ЧӐВАШ ХАЛӐХ ПУЛТАРУЛӐХӖ

# МИФСЕМ ЛЕГЕНДӐСЕМ ХАЛАПСЕМ

ЧУВАШСКОЕ НАРОДНОЕ ТВОРЧЕСТВО

# МИФЫ
# ЛЕГЕНДЫ
# ПРЕДАНИЯ

ЧЕБОКСАРЫ — 2004

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ

# МИФСЕМ ЛЕГЕНДĂСЕМ ХАЛАПСЕМ

ШУПАШКАР — 2004

УДК 821. 512.111
ББК 82.3 (2 Рос=Чув)—6
Ч 12

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн*
*Ăслăлăх канашĕ пичете çирĕплетнĕ*

Редакци канашĕ:
***В.С.Григорьев, В.Д.Димитриев, М.Г.Кондратьев, В.П.Станьял, А.А.Трофимов, Г.Ф.Юмарт***

Редакци ушкăнĕ:
***Е.С.Сидорова, В.П.Станьял, А.А.Трофимов, Г.Б.Матвеев, В.Г.Харитонова, Г.Ф.Юмарт***

Рецензентсем:
филологи наукисен докторĕ ***Н.И.Егоров,***
истори наукисен докторĕ ***А.К.Салмин,***
филологи наукисен кандидачĕ ***Г.А.Дегтярев***

Йĕркелекенĕ тата ăслăлăх редакторĕ ***В.П.Станьял***

Пухса хатĕрлекенĕ ***Е.С.Сидорова***

Ум сăмахне çыраканĕсем ***А.А.Трофимов, В.П.Станьял***

Кĕнекери хайлавсене
ал çырусем тăрăх ***О.Н.Терентьева*** тĕпчевçĕ тĕрĕсленĕ

Ч 12 **Чăваш халăх пултарулăхĕ.** Мифсем, легендăсем, халапсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. — 567 с.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ кăларакан нумай томлă ярăмăн пĕрремĕш кĕнеки — халăх хайлалăхĕн авалхи жанрĕсен пуххи — чăваш ăс-хакăлĕн нумай ĕмĕр тăршшипе пухăнса пынă тĕслĕхĕсемпе паллаштарать. Унта сĕм авалхăхра йĕркеленнĕ хайла-хачмак та (мифсемпе легендăсем), каярахпа пулса кайнă хаймак-халап та вырăн тупнă.

Кĕнеке чăваш халăх историйĕпе, тĕнĕпе, сăмахлăхĕпе кăсăкланакан кирек хăш вулаканшăн та усăллă.

**УДК 821. 512.111**
**ББК 82.3 (2 Рос=Чув)—6**

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2004
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2004

**ISBN 5—7670—1280—6**

# ХАЛĂХĂН ИКСĔЛМИ ПУЯНЛĂХĔ

Нумай кĕнекеллĕ «Чăваш халăх пултарулăхĕ» кăларăм — Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ хатĕрлесе пичетлекен пысăк ĕçсенчен пĕри. Халăх сăмахлăхне институт темиçе хут та пухса кăларнă. Туллирехххĕн пичетлени — 6 томлă (7 кĕнекеллĕ) кăларăм (1973—1987). Ку ярăм унчченхинчен чылай пуянрах пулмалла, вăл сахалтан та 50 кĕнекерен тăмалла.

Кăларăма хатĕрлекенсем Чăваш тĕпчев институчĕн ăслăлăх архивĕнчи, Шупашкарти, Хусанти, Мускаври музейсемпе вулавăшсен управлăхĕсенчи тĕслĕхсене пурне те шута илме тăрăшнă. Кăларăма сăмахлăх тĕсĕсем (жанрĕсем) тăрăх йĕркеленĕ. Кĕнекесен умĕнче сăмахлăх хайлавĕн тĕсне, шалти тытăмне (поэтикине), пухса тĕпченин çул-йĕрне кĕскен ăнлантарса панă, вĕçĕнче вара кашни тĕслĕхе кам, хăçан тата камран çырса илнине, ăçта упраннине кăтартса хăварни пур.

Чăваш халăхĕн сăмах вĕççĕн аталанса пынă пултарулăхĕ тишкерсе пĕтерме çук анлă та пуян. Халиччен пухса пынисене йăлтах пичетлесе пырас пулсан кăларăм 10—12 теçетке кĕнекерен иртсе каймалла. Н.В.Никольский, Н.И.Ашмарин, И.Н.Юркин, Н.Р.Романов, А.П.Милли, К.В.Элле, И.А.Патмар, И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, Г.Ф.Юмарт тата ытти нумай-нумай сăмахçă-фольклорçă пухнисене, Г.Ф.Федоров, И.Г.Вдовина пек ăстасем юрлани-каланисене çĕнĕрен хушса кăларни те кирлĕ. Уйрăммăн кăларнисен паха тĕслĕхĕсем пур. Сăмахран, Дюла Месарошăн «Памятники старой чувашской веры» (2000), Григорий Тимофеевăн «Тăхăрьял» (2002) кĕнекисем.

Ку нумай кĕнекеллĕ кăларăма халăхра çуралнă еткере ирĕксĕрех суйласа илсе, пахараххисене ытти вариантсенчен уйăрса кĕртме тивет.

Халăх сăмахлăхĕн тĕсĕсене ку чухнехи ăслăлăх тараннăн та туллин хаклама вĕренсе çитрĕ, тишкерӳ меслечĕсемпе мелĕсене тĕрĕслесе йĕркелерĕ. Çавна май чăваш сăмахлăхĕн речĕсене, тĕсĕсене палăртмалли виçесем, жанр ячĕсем якалса, пайăрланса пычĕç. Вĕсемпе нумай кĕнекеллĕ кăларăмра туллин усă курма тĕв тунă. Сăмахлăх халăх пултарулăхĕн ытти енĕсемпе тачă çыхăнса тăрать. Вăл уйрăмах юрă-кĕвĕпе, ташă-вăйăпа, йăла-йĕркепе, шилĕк-уявпа пĕрле аталанать. Пуплев сăмахлăхĕ вĕсенчен уйăрмасăр пăхсан кăна туллин кӳрăнать. Çавна шута илсе кăларăмра паллăрах кĕвĕсен, ташăсен çыравĕсене те кăтартма палăртнă.

Халăх сăмахлăхĕ — халăхăн пин-пин çул упранса юлнă сăнарлă ĕмĕрĕ, чунĕ, шухăшĕ-туйăмĕ. Пиншер çын чунĕ витĕр шăранса тухса, хут çине

çырăнаймасăр упранса пынă вăл. Тен, чулпа патак çине, тирпе пир çине карт паллисемпе çырăннă та пулĕ несĕлсен сăмахĕ. Анчах пирĕн авалхи кĕнекене «хĕрлĕ ĕне» (вăрçă-харçă пушарĕ) çисе янă. Халăхăмăрăн пурнăçпа вилĕм хушшинчи вутлă-тăвăллă çулсем çинче авалхи чылай хайлав-халапа çухатса хăварма тивнĕ. Çавăнпа аваллăхăн упранса юлнă кашни тĕпренчĕкĕ пирĕншĕн ылтăнран та хаклăрах. Вăйланса аталанакан ăслăлăх вĕсем тăрăх тăван халăх несĕлĕсен çулне-йĕрне шыраса пырать.

Сăмахлăхăн пур тĕсĕсем те вăрăм ĕмĕрлĕ. Çапах та пуринчен те малтанхисем тесе уçлăхпа çĕр пулса кайни, çутă тĕнчери ӳсен-тăранпа выльăхчĕрлĕх ĕрчеме тытăнни çинчен калакан хаймаксемпе (мифсемпе) хачмаксене (легендăсене) тата аваллăх халапĕсене (преданисене) шутлаççĕ. Çавсене пысăк кăларăмăн малтанхи кĕнекине кĕртнĕ.

Хыççăнах улăп халапĕсем, кĕлĕсем, сăрмансемпе сăвапсем, пилсемпе халалсем, ӳкĕтсемпе ухăтсем, калмаксемпе вĕрӳ-суру чĕлхисем, унтан ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, ача-пăча тата яш-кĕрĕм сăмахлăхĕ, юмахсем, юрăсем тăраççĕ. Кĕске каларăшсем, такмак-тупăшмак, месек-шӳтек, имĕш-тимĕш тата ытти хайлалăх хайне уйрăм кĕнеке пулса пичетленет.

Кил-йышпа тата кулленхи пурнăç йĕркисемпе çыхăннă сăмахлăх уйрăм ярăмпа пичетленĕ. Туй-çуй вылявĕ, вăйăсемпе уявсен сăвви-юрри, пытарупа асăну сăмахĕ те ярăм-ярăмăн сыпăнса пырĕ.

Халăх пур чухне унăн сăмахлăхĕ пĕтмест. Яланах çапла пултăр!

***Кăларăмăн редакци канашĕ***

# ЧӐВАШ МИФӖСЕМ: ТЫТӐМӖ, КӲЛЕПИ, ЧӖЛХИ, СӐНАРЛӐХӖ

Авалтан килекен халӑх сӑмахлӑхӗ — нацин иксӗлми пуянлӑхӗ, унӑн ӗмӗрлӗхсене ҫыхӑнтаракан еткерӗ. Унра халӑхамӑрӑн кун-ҫулӗ, кӗрешӗвӗ, мухтавӗ, ӑс-тӑнӗ, шухӑшлавӗ, илемлӗхе туйма пӗлни упранать. Вӑл ӗмӗр-ӗмӗр аталанса тӗрлӗ ушкӑнсене уйрӑлнӑ: миф, легенда, предани, халап, юмах, пил, пехил, кӗлӗ, чӳк, вӗрӳ-суру чӗлхи, туйпа ӗҫкӗ-ҫикӗ, уяв, салтак, йӑла-йӗрке сӑмахӗсемпе юррисем, такмаксем, ача-пӑча фольклорӗ т.ыт.те. Ҫакӑнпа пӗрлех вӗсем уйрӑм-уйрӑм пайсене вакланаҫҫӗ.

Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗ хатӗрленӗ нумай томлӑ «Чӑваш халӑх пултарулӑхӗ» пуххисен пӗрремӗш кӗнекине мифсен ярӑмне халалланӑ.

Халӑх пултарулӑхӗнчи ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсемпе пурнӑҫ йӗркеленӗвне, этем, чӗр чун, тискер кайӑкпа ӳсен-тӑран тӗнчин вӑрттӑнлӑхӗсем ҫинчен калакан е ӑнлантарса пама тӑрӑшнӑ сӑмах вӗҫҫӗн ӳсресе аталаннӑ асамлӑ хайлава *миф* теҫҫӗ. Вӑл яланах ӗненӳпе ҫыхӑннӑ тата тӗн сӗмӗпе витӗннӗ. Унӑн кӳлепи те, тытӑмӗ те, чӗлхи те, сӑнарӗ те халапран, легендӑран е преданирен хӑй евӗрлӗхӗпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ.

Чӑваш мифӗ хӑйӗн тытӑмӗпе ытти халӑхсеннинчен уйрӑм мар. Анчах унӑн сюжечӗсем нумай енлӗ. Ку вӗсен аталанӑвӗсем сӗм авалтан килнипе тата халӑх йышӗ этнографи ушкӑнӗсенчен тӑнипе ҫыхӑннӑ. Вирьялсен, анат енчисемпе анатрисен мифӗсем пӗр-пӗринпе тепӗр чухне сӑмах ҫаврӑнӑшӗпе чӗлхе енчен ҫеҫ мар, хӑйсен кӳлепипе те пӗр евӗре килмеҫҫӗ. Ҫакӑ уйрӑмах вирьялсемпе анатрисен шухӑшлавӗнче сисӗнет.

Наукӑра миф этемлӗх историнче хӑҫан пуҫарӑнса кайни паллӑ. Ҫавӑнпа та уйрӑм пулӑмсем ҫинчен сӑмах тапратиччен унӑн кун-ҫулӗ пирки каласа хӑвармалла. Ҫырӑнса юлнӑ мифсем темиҫе ушкӑна пайланаҫҫӗ. Пӗрисем чӑннипех халӑхӑн. Вӗсем унӑн пурнӑҫ йӗркипе, тавракурӑмӗпе, авалӑхри ӗненӗвӗпе, илемлӗх ӑнланӑвӗпе ҫуралнӑ, чӑмӑртанса аталаннӑ. Теприсем христианство урлӑ ҫав тӗне пӗлекенсем каласа панипе куҫнӑ. Кунта халӑхра пуҫарӑннӑ тесе мар, куҫнӑ е килнӗ темелле. Мӗншӗн тесен ку пулӑм XIX, XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче ҫеҫ пулса иртнӗ. Вӑл вӑхӑтра миф ҫуралмалли тапхӑр пулма пултарайман. Виҫҫӗмӗш ушкӑнрисем — каласа паракансем е информаторсем авалтан килекен чӑваш мифӗсене чӑнласа пӗлменнипе урӑх халӑх тӗнӗсемпе пӑтраштарнисем. Вӗсем хушшинче Библирен, Евангелирен т.ыт. тӗн кӗнекисенчен тӳррӗмӗн кӗнисем те пайтах. Вӗсен йӗркеленӗвӗ саманапа пурнӑҫ, тӗн идеологийӗ улшӑнӑвӗсемпе ҫыхӑннӑ. Тепӗр хут калас килет: христианствӑна ирӗксӗрлесе йышӑнтарнӑ

тапхăр истори вăхăчěпе те, общество аталанăвěн тытăмěпе те миф тапхăрě мар. Ҫакна кура ěнтě православирен сăрхăнса кěнě хайлавсене чăваш мифěсен ретне тăратма май ҫук.

**Мифсене пухнипе тěпчени**. Чăваш хайлалăхěн тěслěхěсене ҫырса илсе тěпчесси XVIII ěмěрте тин пуҫланнă. Аякран килнě ҫӳревҫěсемпе православи е ислам миссионерěсем халăх хушшинче пухнă хайлавсене ҫырса илнě чухнех тěрěс хакласа хăварнисем пур. Хамăрăн авалхи сапаланса пěтнě палăксене пěрле пухса ҫитереймен-ха, карт е рунă паллисемпе ҫырса хăварнă палăксене халиччен те тěпчесе тухайман. Вěсене малашнехи ăрусен тума тивет. Ăслăлăх аталанăвě пурě пěрех ҫавăн патне илсе пырать.

Инҫетрен килсе чăваша сăнакансенчен Ахмед ибн Фадлан, Николас Витзен, Г.Ф.Миллер, Дюла Месарош, Хайкки Паасонен, ытти теҫетке ҫӳревҫě палăртнисем, чăвашсем хушшинче пурăннă К.С.Милькович, А.А.Фукс, В.К.Магницкий, В.А.Сбоев, Д.П.Ознобишин ҫырса хăварнисем кирлě те паха. Авалхи хаймак-хачмак тěнчине, тěн, киремет, йěрěх, арҫури тата ытти ыр-усала XIX ěмěрте В.П.Вишневский, Н.С.Каменский, Т.А.Земляницкий, А.С.Иванов, М.Г.Васильев ăсчахсем ҫутатса хăварнă. XX ěмěрти ăстасенчен М.Ф.Федоров, Н.И.Ашмарин, Н.В.Никольский, К.П.Прокопьев, П.В.Васильев, К.С.Сергеев, А.В.Смоленский, П.В.Пазухин, Г.Т.Тимофеев, Г.И.Комиссаров, Т.С.Пассек, С.С.Кутяшов, М.Я.Сироткин, И.С.Тукташ, И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, Н.И.Егоров, А.А.Трофимов, Г.Ф.Юмарт, Н.А.Исмуков тата ытти паллă ăсчахсем тěпчени хайлалăх пěлěвне тарăнлатса пынă.

Ҫырăнса юлнă тěслěхсем хушшинче кăнтăрти тата тухăҫри чи авалхи вырăнсене кăтартакан йěркесем курăнаҫҫě. Вěсем нумай мар, анчах питě хаклă. Ырлăх-пурлăха пăрахса хăварнă аякри вырăнсене, ял-хулана, ҫěрěмěр-шывăмăра аса илтереҫҫě вěсем, хамăр халăхăн авалхи ҫул-йěрне ăнкарма хытах пулăшаҫҫě.

Авалхи халапсене тěн-тěшмěш юлашки тесе тěпчеме те, пухма та чарнă вăхăтсем пулчěҫ. XIX ěмěрте пурăннă ҫынсен халапěсене ятарласа пухса тěпчеменни пысăк сиен туса хăварчě. 1967 ҫултанпа, И.Н.Ульянов ячěллě Чăваш патшалăх университечě уҫăлсан, И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, В.П.Станьял вěрентӳҫěсем йěркеленипе студентсен ушкăнěсем ҫулсеренех фольклор экспедицийěсене тухса ҫӳрерěҫ. Анчах вěсем пухнă сăмахлăхра авалхи хайлалăхăн уйрăм паха тěслěхěсем кăна курăнаҫҫě. Вěсене тулайри чăн чăваш ялěсенче (вырăс е тутар тěнěсене йышăнман ҫěрте) ҫырса илнě. Хайлалла халапсенче аваллăх йěрěсем Пенза облаҫěнчи Итěм Кура, Самар облаҫěнчи Ухинккел, Тутарстанри Аксупа Саврăш, Пушкăртстанри Пишпӳлекпе Ҫирěклě таврашěсенче XXI ěмěр пуҫланиччěнех ҫирěп упранса тăчěҫ.

Чăваш хайли-халапěсем ӳнер ăстисене яланах кăсăклантарнă. Паллă ҫыравҫăсем Константин Иванов, Ухсай Яккăвě, Александр Алга, Георгий Ефимов, Юхма Мишши, Геннадий Юмарт, Борис Борлен тата ыттисем халăх халапěсем тăрăх паха хайлавсем ҫырнă. Алексей Майраслов, Анатолий Миттов, Федор Мадуров, Петр Пупин, Николай Енилин, Владимир Агеев тата ытти ӳнерҫěсем вилěмсěр сăнарсем калăпланă.

**Ят сăмахсем (терминсем).** Хайласа калани — шухăшласа кăларса, ăспа сěмлесе, чухласа, ăнкартса калани. «Хай» сăмахран «хайпӳрен» (пурнăҫ паракан ырă хăват), «хайман» (тир енчěк) пулса кайнă («хай» — жизнь тенě В.Г.Егоров профессорăн этимологи сăмахсарěнче). «Хайла» (способ,

средство, импровизация, смекалка, мастерство, умение хитрить и сочинять т.ыт.) сăмахран «хайлав» (произведени), «хайлăк» (шкулти сочинени), «хаймак» тата ытти сăмахсем йĕркеленнĕ. «Хайла» ят сăмахпа (терминпа) XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш çыравçисем (И.Н.Юркин, М.Ф.Акимов, Д.А.Демидов-Юлташ, Д.С.Эльмен тата ыттисем) литература жанрне — шахвăртса, юптарса, пулма пултарайманнине пулнă пек туса кăтартакан пĕчĕк хайлавсене — пулмасла калавсене палăртнă (В.П.Никитин. Чувашский рассказ, 1985. С. 23).

Халăх халапĕсен чи авалхи пĕр тĕсне «хаймак» сăмах пĕлтерĕшĕ тӳрĕ тухать. Грекла ăна «миф» («сăмах»), вырăсла «сказание, повествование, вымысел» теççĕ. «Миф — сказание, передающее верования древних народов о происхождении мира и явлений природы, о богах и легендарных героях. Миф — возникающее на ранних этапах истории повествование, фантастическое отражение действительности в первобытном сознании, воплощенное в характерном для древности устном народном творчестве» (Философский словарь. М., 1968). Хайласа каласси, философсем ăнлантарнă тăрăх, этемлĕхĕн пуçламăш вăхăтĕнче, этем тĕнче тытăмĕпе çут çанталăк пулăмĕсене тĕшмĕртме кăна тапратнă тапхăрта çуралнă. Çавăнпа часчасах «миф» сăмахпа жанрсене мар, пĕтĕмĕшле тĕнчекурăма палăртни тĕл пулать («Миф — форма общественного сознания, возникшая в условиях сравнительно низкого уровня социального развития и отражающая в виде образного повествования фантастического представления о природе, обществе и личности» (Словарь античности. Пер. с нем. М.: Прогресс, 1993. 358 с.). Пирĕн сăмах кунта тĕнчекурăмран ытларах хайлавсен жанр тытăмĕ çинчен пырать. Кăна вара нимĕçсен сăмахсарĕ «мифологи» сăмахпа палăртать. Çав сăмахпах хаймаксене тĕпчекен ăслăлăха та каланă. *Хайласа, сĕмлесе кăларнă хайлавсене тĕпчекен ăслăлăха эпир «хайлалăх» тетпĕр.* Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен ку ăнлав хаймаксене кăна мар, хачмаксемпе халапсене тĕпчениине те палăртса тăрать. Этеме пăхăнман тĕрлĕ хăватсем çинчен калакан хаймаксем, халапсем, тĕн-тĕшмĕш вĕрентĕвĕсем ĕлĕк кăна мар, чылай кайран та тупăнсах пынă, вĕсем халăх сăмахлăхĕн пысăк пайĕ пулса тăнă.

Хайласа каланисен тепĕр тĕсĕ — легендăсем. Чăвашла вĕсене «хачмак», «таймак» сăмахсемпе калани тĕл пулать. Анчах ку сăмахсемпе тĕпчевçĕсем усă курман. «Тай», «тайла», «тайлак», «тайлăк», «тайма», «тайăлу», «тайăлчăк», «тайăм», «тайăн», «таймак», «таймăк», «пуçтай», «мăнттай», «çăмăлттай» сăмахсем калаçура сарăлнă, сăмахсарсенче пур. Ахăртнех, «тайхай» тенисем «хай» тата «тай» сăмахсен «хăватлă, вăйлă, пысăк» (легендарлă) пĕлтерĕшĕнчен пулса кайнă. «Хачмак» сăмах Янăш мăчавăрĕ Хăяхван ламшар çырнисенче тĕл пулать (Общество, государство, религия. ЧГИГН, 2002). Унта вăл чăваш несĕл пуçĕсем çинчен каланисене палăртать тата «хачмак панин» йăлине (ваттисем ăру тăхăмĕсене йăх халапне каласа хăварнине) асăнать. Халăх сăмахлăхĕнче такмак, калмак терминсемпе пĕр пек илтĕнекен «хачмак», «хаймак» сăмахсемпе малашнехи тĕпчевре усă курни вырăнлă пулĕ.

Унчченхи кĕнекесемпе тĕпчев ĕçĕсенче «хайла», «миф», «халап», «легенда», «предани», «мифологи» сăмахсемпе пĕр танах усă курнă. «Пирĕн ăсчахсем пур чухне те чăваш фольклорĕн харпăрлăхне те, халăхăмăрăн терминологине те уясах тăман, вырăссем такăрлатнă çулпа кайнă... Терминсене чăвашла çавăрса хунипех çырлахнă» (Н.И.Егоров. Чăваш фольк-

лорĕн проза жанрĕсене ушкăнласси тата терминологи ыйтăвĕсем. Халăх шкулĕ, 2002, 4№). Тĕрĕссипе, чăваш фольклорçисем терминсене «çавăрса та хуман», çаплипех усă курнă. Пĕтĕмлетсе «халапсем», «юмахсем» тенипех иртсе кайнă. Халăх сăмахлăхĕнче авалхи хаймак-хачмакпа пĕрлех хальхи вăхăтра пачах урăх тытăмлă «халапсемпе юмахсем» пуррине шута илме тивет.

«Халап-юмах» ăнлав халăх прозин пĕтĕм кӳлепине палăртса тăрать. Вĕсем хушшинче жанрсен тĕрлĕ тĕсĕсем нумай. Тĕпчев ĕçĕнче вĕсене уйăрни кирлех. Тĕнче аваллăхне шыракансем çырнă тăрăх, хăйсен тĕнне улăштармасăр пурăннă халăхсен хайлалла шухăшлавĕ тасараххăн упраннă, çавăнпа вĕсен сăмахлăхĕнче пĕтĕмлетӳ сăмахĕсемпе пĕрлех тĕрлĕ тĕссене вĕтвак ятсем парасси те аталаннă. Чăвашăн вăл пур пулсан мĕншĕн усă курас çук?

*Пурнăçра пулнă паттăр та хăватлă çынсем çинчен турă евĕрлĕ ĕссĕмлесе (фантазилесе), хайлалла шухăшласа калани — хаймак, пурнăçри çынсем тĕлĕнтермĕш тĕнчере çӳрени çинчен юптарса-тыттарса шахвăртуллă шухăшласа çавăрни — юмах, чăн пурнăçра пулнă ĕçсем, паллă çынсем, вырăнсем çинчен анлă (эпикăлла) хайлалатса калани — халап.*

Чылай халăхăн авалхи хаймак, хачмак жанрĕсем е пачах çук, е пĕтĕмпех кайранхи тĕн халапĕсемпе улшăннă. Чăваш халăх сăмахлăхĕн ку жанрсем пур кăна мар, вĕсен тĕрлĕ тĕсĕсем XX ĕмĕр вĕçĕччченех упранса пынă.

Халăх сăмахлăхĕн терминĕсене чăвашлатасси çинчен Г.И.Комиссаров «Чăваш фольклорĕпе литературин вĕрентĕвĕ» (1923) статьяра ятарласа çырнă. Унта вăл «халаплăх» сăмаха «словесность» вырăнне, «çырулла халаплăха» литература, «халăх халаплăхне» фольклор вырăнне усă курма сĕннĕ. Кусем пирĕн чĕлхене кĕрсе вырнаçайман. Предание вăл «авалхи халап», анекдота «кулăшла халап», притчăна «юптарулла халап» тенĕ. Чылай чухне халĕ те çаплах каласçĕ. «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI том: Мифсемпе халапсем» кĕнекере (1987), М.Я.Сироткин, И.И.Одюков, Е.С.Сидорова тĕпчевĕсенче «миф» тата «улăп халапĕсем» терминсемпе усă курнă. Чăваш шкулĕн 10-мĕш класĕ валли кăларнă «Чăваш сăмахлăхĕ» вĕренӳ кĕнекинче (1-мĕш пай, 1993) мифсемпе легендăсене «хайла», преданисене «халап» тесе пăхнă. Тимлесе тишкернĕ чухне хаймак (миф), хачмак (легенда), халап (предани), хаймакла юмах (мифла юмах), хаймакла (сăвăллă е прозăллă) пейĕт, хаймакла юрă, хаймакла калав, усал-тĕсел хăратмăшĕсен (вырăсла «бывальщина» тата «былица») жанрĕсем çывăх пулсан та хăйсен тĕшшисемпе пĕр-пĕринчен расна тăни, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса тĕпчеме кирли курăнать. Ячĕсене чăвашла, вырăсла, акăлчанла, грекла каласси — тĕпчевçĕн е вĕрентӳçĕн хăйĕн ирĕкĕ, анчах та чăваш япалине тăван сăмахпа ăнлантарни тĕрĕсрех.

Хаймаксемпе хачмаксем (мифсемпе легендăсем) иккĕшĕ те ăрамлă, пĕр-пĕринпе тачă тăракан, пĕр шăнăрлă халапсем. Вĕсем халăх сăмахлăхĕн ватă тĕсĕсем шутланаççĕ. Хут çине чăваш халапĕсене авал мĕнле çырса хунисене пĕлместпĕр пулсан та, халăх асĕнче ăруран ăрăва сăмах вĕççĕн куçса пынă хаймак-хачмак упранса юлма пултарнă. Вĕсен никĕсĕнче авалхи тĕнчекурăм, авалхи сăнарлăх тытăнса пынă.

Классикăлла хайлалăх (мифологи) — историн авалхи тапхăрĕн культурипе менталитечĕн пĕр тĕсĕ пулса кайранхи тапхăрсенчи çынсен шухăшлав мелĕсене хăй ăшне пухса тăнă. Унта тĕн пуçланиччченхи ĕненӳсен

малтанхи тĕслĕхĕсем, кайранхи вăхăтри çынсене пайласа-уйăрса кăтартнисем, вĕсен этеплĕхĕ-хисеплĕхĕ, тĕнче тытăмне ăслăлăх манирлех ăнлантарса пама пуçланисем курăнаççĕ.

Классикăлла хайлалăхра пурнăçăн тĕп ыйтăвĕсене — ĕмĕрпе шăпа тавра çуралакан шухăшсене хускатнă, çавăнпа вĕсем ĕмĕрсенче çухалса юлман, кашни çĕнĕ ăрăва татах та татах хумхантарнă. Хайлалăх уйрăм ăрусем, уйрăм халăхсем хушшинче никĕсленсе тухнă.

Хайласа шухăшласси ăслăлăхпа пĕлÿ вĕрентĕвĕсем пуçланиччен чылай малтан çуралнă, çавăнпа хаймак-хачмакра ансат сăнарлăх пурри, вĕсем ÿнер тытăмне çывăххи тÿрех курăнать. Хайлалла шухăшлав тĕнчене капмаррăн, шултран виçет. Этемĕн харкам сисĕм-туйăмне те халăх шухăшĕ-туйăмĕпе пĕр майлă пĕтĕмлетсе кăтартать. Хаймакра пĕтĕмлетсе калани кашни çынна çывăх, ăнланмалла курăнать. Ку вăл ÿнерсен, сăнарлăхсен никĕсĕнчи пысăк пахалăх. Хаймакра çут çанталăкпа çын, талккăшпа вăхăт, япалипе палли, хапипе тĕшши, хуçипе тарçи (турăпа ырăсем) питĕ тачă çыхăнса тăраççĕ. Хаймак хальхи вăхăтшăн айванла курăнать, анчах унăн тĕшшинче нимпе сирсе яма май килмен пĕлÿ пуçламăшĕ упранать. Тĕнчепе Уçлăх, ăспа туйăм, пурнăçрипе чунра пурри — материализмпа идеализм — унра пĕтĕçсе пурăнаççĕ. Хайлалла шухăшлав — этемлĕхĕн ача чухнехи шухăшлавĕ. Тен, çавăнпах пулĕ ача-пăча халап-юмаха, хаймак-хачмака пысăккисенчен те лайăхрах ăнланать, юратать, ним мар хăйле ăнлантарса парать.

«Хайлалăх» (мифологи) сăмахпа хаймак-халапа, вăл упракан ăс-тăна, тĕнчекурăма, ăнкарулăхпа пĕлĕве, тĕпчев ăслăлăхне пĕтĕмлетсе палăртма усă куратпăр.

**Хайла-халапсен авалхи пĕрлĕхĕ.** Индири Веда, Махабхарата, Китайри Шу-цзинь, Хуайлань-цзы, Иранри Авеста çырăвĕсене, Египетпа Грецири мифсене тĕплĕ тĕпченĕ. Вĕсен мифĕсенчи сăнсем чăваш хаймакĕ-хачмакĕсене кĕрсе хутăшнă тĕслĕхсем самаях йышлă. Мĕнле майпа лекнĕ вĕсем?

Ахăртнех, сĕм авалхи вăхăтсенче пирĕн ват несĕлсем çав вырăнсемпе, ытти ăрусемпе çыхăну тытнă е пĕр кăк-тымартанах аталаннă.

Чăваш несĕлĕсен «Шăпа кĕнеки» — Авалхи Египетри «Ĕне кĕнеки» е «Вилнисен кĕнеки», Грецири Гесиодăн «Теогони», Гомерăн «Илиадипе» «Одиссеи» е Овидин «Метаморфоза» поэмисем пек хайлав. Халăхсен пĕрремĕш аслă куçăмĕ чухне «хĕрлĕ ĕне» (вăрçă) хырăмĕнче пĕтнĕ. Вĕсен тĕпренчĕкĕсенчен Улăп, Шу, Ан, Пир, Пан, Хур, Чура паттăр халапĕсемпе Мăн кĕрÿ такмакĕсем упранса юлнă. Кайран та халăхăмăра тискер инкексем («хĕрлĕ ĕнесем») таптасах тăнă.

Авалхи Месопотами, Египет, Китай витĕмĕ чăваша мĕнле лекнине ăнлантарнисем çителĕксĕр пулсан та, пĕрпеклĕх тĕслĕхĕсем халиччен тĕпченинчен чылай нумайрах. Халăхăн авалхилле курăмне тÿрех пĕтерме çук. Чăвашсен тĕнчепулăм хаймакĕсен пирĕн эрăчченхи VII—V ĕмĕрсенчи Вăта çĕр тинĕс тавринчи Египетпа Греци, Вавилон, Иракпа Иран, Кĕçĕн Ази, Индипе Китай халапĕсенче тĕл пулакан йĕрĕсем пур. Вĕсем авалах хаймак-халапа тата чăваш тĕн вĕрентĕвне кĕрсе юлнă. Тĕслĕхрен, хальхи чăваш чĕлхинче пĕлтерĕшне тĕксĕмлетнĕ турăсемпе ырăсен, усалсемпе тĕселсен ячĕсем пурте пекех авалхи тĕнче мифĕсенче уççăнах палăрса тăраççĕ. «По нашему мнению, между чувашским *ана*, иранской *Анаит*, согдийской *Анахити*, армянской *Анаит* есть какие-то древние связи», — тенĕ А.А.Трофимов тĕпчевĕ «Антропоморфизация модели мира...» статьяра. — «...большой

интерес должен представлять также факт идентичности чувашской Ама с древнешумерской прародительницей мира Ама» (7 хутьен). Тӗрӗс сӗнӳ ку. Танлаштару меслечӗ пайтах вӑрттӑнлӑха уҫса кӑтартать. Тӗслӗхрен, Амаксар тӑвайккинче XX ӗмӗр вӗҫӗчченех упраннӑ «тимӗр така» Египетри Мӑнту (Амӑн, Амон) такин каснӑ лартнӑ йӗкӗрешӗ, ӑна пирӗн ват маҫаксем хаисемпе илсе ҫӳренӗ, ӗмӗртен ӗмӗре тирпейлӗ упранӑ. Амаксар халапӗсенчен перинче чӑвашсен авалхи элемне (символне) — тимӗр така кӗлеткине — упраса тӑракан ушкӑнран Ҫичӗ нукер Вылӑ шывӗнче путса вилни ҫинчен каланӑ. Вылӑри Ҫичӗ салтака халӗ те асӑнса кӗлӗ калаҫҫӗ.

Халӗ ҫынсем хӑйсем лайӑх пӗлекен сӑмахсемпе е ятсемпе ҫыхӑнтаракан «сурхури», «хур кайӑк ҫулӗ», «сӗт ҫулӗ е сӗт кӳлли», «пан улми», «арӑш-пирӗш», «асар-писер», «сехмет хӑпрӗ» тенисем тӗнче хайлалӑхӗнче тӗп вырӑнта тӑракан «Хорс-Торым», «Гор-ахути», «Сет, Сетх», «Пан», «Арес, Марс», «Сехмет» тата ытти турӑсен ячӗсемпе тӗрлӗ ҫыхӑнура тӑраҫҫӗ. Вӗсем ӑнсӑртран килекен пӗрлӗх мар, сананӑҫемӗн ҫыхӑну тымаре таранрах уҫӑлса пырать. Чӑваш чӗлхинче пытарӑнса упранакан пуянлӑха хальлӗхе чӗптӗм те уҫса пӑхман-ха. В.Г.Егоровпа М.Р.Федотов хатӗрленӗ этимологи сӑмахсарӗсем ҫав вӑрттӑнлӑха сӑнама пусӑннӑ кӑна. «Тӗн» (вера, религия) сӑмах питӗ авалхи, Сӑкӑтпа Вавилон палӑкӗсенчех пур тенӗ вӗсем. Китайла «тянь» тени «тӳпе» пӗлтерӗшлӗ, «тянься» вара — тӳпе айӗ, чӑвашла — тӗнче. Китай чӗлхинче чӑваша ӑнланма ҫӑмӑл сӑмахсем йӗркерен: «Тути, ути» — ҫӗр е улӑх, «шень» — ҫын е турӑ, «гун» — хун е хуҫа, «мер» — халах, ушкан... Вара «Тутимӗр» ят та «ту-Тимӗр» мар, «Тутимер» — Ҫӗр халӑхӗн паттӑрӗ пулса тухать.

Иран мифӗнче Турӑ — халӑхӑн аслӑ несӗл пуҫӗ, Юм маҫакӑн ывӑлӗ. Унӑн икӗ шӑллӗ пур: Салмапа Эрача, Турӑпа Салма шӑллӗне — Эрачана — Иран хуҫи пуласран хӑраса вӗлернӗ. Кайран Эрача ывӑлӗ Мӑн Чакӑр хӑйсене ҫапса салатнӑ. Иран эпосӗн паттӑрӗ Тус вара Турӑ халӑхне ҫӗнтерет. Ҫак мифри ятсем чӑвашлах янӑраҫҫӗ. Ун пек «чӑвашла» ятсем Авестӑра, фарс, хетт, аккад палӑкӗсенче туллиех.

Египет хайлалӑхӗнче (уйрӑмах Мемфиспа Гелиополь тӑрӑхӗнчи сӑмахлӑхра) чӑваш халапӗсенчи ят тесеткипе куранать: Сехмет, Пата, Акар, Шу, Сӗт, Вут, Ара (Ра), Авӑн, Хур, Кепе (Геб), Хапа, Хатӑр... Ку сӑмахсем Египетӑн Авалхи патшалӑх тапхӑрӗнче (пирӗн эрӑчченхи XXVI—XXIII ӗмӗрсенче) ҫырӑннӑ. Каярахпа Египетран тотем хӑватсен ячӗсем тӗрлӗ еннелле нумай куҫнӑ. Пирӗн тӗнре тотем, фетиш, анима пайӑрлӑхӗ ҫирӗп упранса юлман. Уйрӑм мешехесенче ҫеҫ палӑраҫҫӗ вӗсен пӗрчисем. Эппин, чӑваш несӗлӗсем авалхи вырӑнтан маларах — ыттисем Куш (Авалхи Нуби) ҫӗршывне куҫса кайма пуҫличченех тапранса тухнӑ теме пулать.

Монолатри тапхӑрӗ (пӗр турра ыттисенчен маларах кӑларса тӑратни) чӑваш тӗнӗнче ыттисенчен раснарах. Турӑ малтан ҫӗр ҫинчи несӗл пуҫӗ шутланнӑ пулсан, кайран — шульӑш, сисчӗм шайне хӑпарнӑ. Вара вӑл пур ҫӗрте те пур, анчах куҫа курӑнми пулса тӑнӑ. Ҫавӑнпа Амаксарти сартӑш вӗрентӗвӗ ҫуралакан-вилекен япала йӑлтах чӗрӗ тесе вӗрентет (тӗнче тӗпчевҫисем ку пулӑма «гилоизм» терминпа палӑртаҫҫӗ). Ҫирӗпленнӗ кайранхи тӗнсем (иудаизм, христианство, ислам) турӑ чӗрӗ те пӗртен-пӗр теҫҫӗ. Чӑваш тӗнӗнче турӑ нумай. Мӑн турӑ тата ытти ырӑсем тӗнче тулли. Вӗсем ҫутӑ ҫанталӑк пек, тӗнче уҫлӑхӗ пек аслӑ! Эппин, тӑн-пуҫ аталанӑвӗн сӗм авалхи — пирӗн эрӑчченхи пинҫуллӑхсен малтанхи вӑхӑтне лекет чӑваш тӗнӗ ҫирӗпленни.

Çакă чăваш несĕлĕсен тĕнчекурăмĕ пирĕн эрăчченхи çав вăхăтсенченех йĕркеленсе килнине кăтартса тăрать. Пĕрисемпе пĕрле пĕр кăкран тухса пурăннă, теприсемпе тăванлă-хурăнташлă пулнă, виççĕмĕшĕсемпе вăрах вăхăт юнашар килĕштерсе тăнă — çавăнпа хамăрăн çуккине вĕсенчен илнĕ, вĕсен çуккине хамăрăнне панă. Çĕнтерсе, пусмăрласа кайнă чухне тăшман сăмахĕ чăваш чĕлхине кĕрсе юлман. Кĕнĕ пулсан та, тăшман патшисен, туррисен ячĕсем чăвашла начар пĕлтерĕшпе, ятламалли сăмах вырăнĕнче кăна çӳренĕ: Бильгерен «пăлька», Яхверен «юхха», Ульгенрен «вилĕм» пулса юлнă.

Лайăхрах тишкерсен чăваш хайлалăхĕнче Авалхи Вăтам Ази, Çывăх Хĕвел тухăç витĕмĕ хăçан-хăçан пырса кĕни те сисĕнмеллех палăрать. Авалхи шумер, аккадсемпе хурритсен сийĕ, тĕрĕк тымарĕ, хасар сăмахĕ, пăлхар никĕсĕ, авалхи араб е ислам витĕмĕ, православи кӳртĕмĕ — пурте пур. Ку тапхăрсем сăмахлăхра та, чĕлхере те, тум-юмра та хăйсен йĕрне хăварнă. Вĕсем урлă халăхăмăрăн вăрăм кун-çулне палăртса пыма пулать. Историри пăрăнми пулăмсем пирĕн еткерлĕхре йĕр хăварни тĕпчевшĕн лайăх. Халăх сăмахлăхне тишкерекенсен авалхи истори çул-йĕрне хаймак-хачмакра шыраса пĕтĕмлетӳ тума юрать.

**Халапсем.** Халап (грекла «вĕрентни», вырăсла «предани, передать») — пулни-иртни çинчен ламран лама куçакан шахвăртуллă сăмахлăх тĕсĕ. Халап сăнарĕсем тĕн-тĕшмĕшрен мар, халăх хушшинчи ĕç-пулăмран килнĕ, вĕсем асамлăх-ăрăмлăхсăрах пулма пултараççĕ. Халапăн пурнăçри тĕрĕслĕхĕ ĕненмеллерех, чăн еверлĕ тухса пырать. Ку енĕпе вăл хачмакран (легендăран) уйрăлса тăрать.

Хачмаксенче (легендăсенче) ырă-хаяр вăйсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Хачмак нумай енчен халапсемпе тачă çывăх. Каласа панинче тĕрлĕ хăватсене ытти сăнарсенчен е пулăмсенчен тарăнрах тата асамлăрах кăтартнă пулсан, ун йышши халап-сăмах хачмаксен ушкăнне кĕрет. Вĕсем — чĕр чунсем, ӳсен-тăран, çĕр çинчи е айĕнчи пурлăх-ырлăх пулса кайни çинчен калаканнисем. «Хотя делались попытки выделить такие виды преданий, как мифические, натуралистические (о происхождении растений и животных), географические (о происхождении местностей, особенностей рельефа, топонимов, полезных ископаемых) и т. п., сейчас эти тексты большинство исследователей относят к жанру легенд (т.н. «мифологические предания» частично принадлежат жанру «быличек», меморатов)» (Г.А.Левинтон. Предания и мифы // Мифы народов мира. Т. 2. 1988).

Паттăрсемпе улăпсем çинчен хывнă халапсем час-часах хăйсен ĕссĕмлĕхĕпе (фантазийĕпе) хайлалăх йышне туртăнаççĕ. Çавăн пекех этиологи халапĕсем (йăхсем, ялсем, вырăнсем, сăрт-ту, тыр-пул, шыв-шур, чĕр чун, ӳсен-тăран пулса кайни çинчен калакан сăмахлăх) иккĕленмесĕр хайлалăх йышне кĕрет. Вăрă-хурахсемпе хусахсем çинчен хывнă хайлавсем паттăрлăх халапĕсене çывăх, анчах кайранхи вăхăта çутатнăран вĕсене историлле халапсен шутне кĕртни тĕрĕсрех. Халăхра тĕшмĕш халапĕсем йышлă. Вĕсем тупра тупни е вăрлани, Леш тĕнчене кайса килни, услапсемпе, арçурисемпе, вутăшпа, шыврипе, вилнисемпе, шуйттан çурисемпе, йĕрĕхийепе, тухатмăшпа, ылханчăкпа, чĕлхеçĕпе тĕл пулнисем çинчен калаççĕ.

Халап — халăх астăвăмĕн пуян арчи. Унта ăрусем пурăнса ирттернĕ историлле тапхăрсем, уйрăмах паллă вăхăтсем, чăн пулнă е пулма пултарнăаслă ĕçсемпе пысăк пулăмсем ӳкерĕнсе юлнă. Халапсем этем хăй пулни-курни çинчен каласа панисенчен йĕркеленсе кайнă. Пĕринчен илтсе

тепри каласа кӑтартнӑ чухне халап якалса, вак-тӗвекрен тасалса пынӑ, пур итлекене те кӑсӑк пайрӑмсене мала кӑларнӑ, пулса иртнӗ ӗҫсене халӑх хакланӑ пек тунӑ та «пулни-иртни», «тетпуль» тата ытти жанрсем йӗркеленӗ. Вӗсем ӗлӗкхине, паянхине, малашне мӗн пулассине хускатаҫҫӗ, халап яланах тахҫан пулса иртнине ҫутатать. *Халапсен тӗп палли — аваллӑх, вӗсен никӗсӗнче асамлӑхпа ӑрӑмлӑх ҫук. Калаканӗ те, итлекенӗ те халапри ӗҫсем чӑн пулнине ӗненеҫҫӗ.*

Халапсем хаймак е хачмак сюжечӗсене ҫӗнетсе тӑсма, аталантарса кайма пултараҫҫӗ. Кайранхи тапхӑрти паллӑ ҫынсене, паттӑрсене, сӑнарсене халапҫӑсем авалхи сӑмахлӑх картине кӗртсе мухтани тем чухлех. Паллах, вӗсем чӑнласа хаймак пулмаҫҫӗ. Ҫапах та вӗсем халӑх сӑмахлӑхӗн авалхи сӑнарӗсем халӑх ӑс-тӑнӗнче кайран та ҫирӗп упранса пурӑннине кӑтартаҫҫӗ. «Авалхи халапсене ҫӗнӗ япала ячӗсем кӗрсе лараҫҫӗ. Сӑмахран, мӑн кӗрӳ такмакне ҫӗнӗ сӑмахсем «кантур» тата «сӑмавар» кӗрсе ларнӑ», — тенӗ Г.И.Комиссаров («Чӑваш фольклорӗпе литературин вӗрентӗвӗ» тӗпчев, 1930). Ҫакӑ ытти ӳнерсемшӗн уйрӑмах курӑмлӑ. Ҫавӑнпа сӑрӑ, шепсут (скульптура), шилӗк ӑстисем авалхи хаймак-таймак, хачмак-халап тӗнчине халӗ те сӑнарлама юратаҫҫӗ.

**Хачмаксем.** Хачмак (латинла «легенда, вуламалли») — пӗр-пӗр тӗлӗнмелле, асамлӑ ӗҫ-пулӑм, хӑват, паттӑр ҫын ҫинчен юмахлатса, анчах чӑн пулнӑ пек ӗнентерсе каланӑ сӑмахлӑхӑн кӗске тӗсӗ, тӗн ӗҫӗсен е историлле пулӑмсен калавӗ.

Хачмаксем (легендӑсем) этемлӗх хайлалла шухӑшлав тапхӑрӗнчен истори вӑхӑтне куҫса пынӑ ӗмӗрсенче ҫуралнӑ. Кайранхи тапхӑрсенче те авалхи курӑм-туйӑм шайӗпе шухӑшланӑран хачмаксем хыҫӑнса пынӑ. Хачмаксем ытларах тӗн вӗрентӗвӗнчи ятсемпе ҫыхӑннӑ. Чӑваш ваттисем хӑйсен несӗл пуҫӗсене те турӑ вырӑннех хурса хисепленӗ. Ун йышши хачмаксем истори халапӗсем патне туртӑнаҫҫӗ пулсан та асамлӑ, хайлаллӑ (юмахри е ӗссӗм хайлавӗнчи пек) енӗсене хытах палӑртса тӑраҫҫӗ, ӑру пуҫӗсем, хисеплӗ ватӑсем ҫинчен хывнӑ хачмаксене уйрӑм йӑхсем, ӑрусем хӑйсем хушшинче кӑна каланӑ. Паллах, вӗсем, пирӗн шутпа, несӗл паттӑрӗсен сӑнарӗсене, ӗҫӗсене пысӑклатса, асамлатса кӑтартнӑ. Шел пулин те, чӑваш сӑмахлӑхӗнче чи авалхи хачмаксем сахал, ҫавӑнпа сартӑш тӗнӗ пӗлекен ырӑсемпе турӑсен ячӗсем вӗсенче сайра тӗл пулаҫҫӗ: хура халӑх турӑсен ячӗсене пӗлмен, вӗсене калама та юраман. Мамалесемпе ламшарсен кӗнекисем вутра пӗтнӗ.

XX ӗмӗрте ҫырса илнӗ сӑмахлӑхра Христос, Мӑхаммат тӗнӗнчи таса хӑватсене кӑтартакан хачмаксем (легендӑсем) нумай. Чӑваш сӑмахлӑхне ун йышшисем XIX ӗмӗр вӗҫӗнче евангелие е корана куҫарнӑран кӗме пуҫланӑ. Унччен вӗсем пулман. Мӗншӗн чӑвашсен авалхи хайлалӑхӗнче христианла, библилле халап сахал? Пӗрремӗшӗнчен, Христос тӗнӗ чӑваш хушшине хайлалла шухӑшлав тахҫанах иртсе кайсан чылай кайран тин килнӗ. Иккӗмӗшӗнчен, чӑваш халӑх тӗнӗ-вӗрентӗвӗ пачах урӑхла никӗссем (Ырӑпа Хаяр пӗрлӗхӗ) ҫинче тӑрать. Ырӑ-усал хӑватсем ҫинчен калани чӑн пурнӑҫри кӗрешӗве ҫывӑхрах. Ӗҫпе пурӑнакан хура халӑх ку вӗрентӗве яланах ӑша илсе пурӑннӑ. Ют вӗрентӗве ниепле те йышӑнасшӑн пулман. Православи тӗнӗ хачмаксене ятарласах чӑваш халапӗсен хапине вырнаҫтарса сарма тӑрӑшнӑ, хаймак сӑнарӗсене ҫӗнӗ вӑхӑта куҫарса юмахлатнӑ. Вара вӑхӑт паллисӗр хайла-тайла, хачмак-калмак, юмах-сӑмах (чылай чухне шӳтлӗ-пӳтлӗ) пулса тухнӑ. Ҫапла вара, хальхаҫҫӑн хайланса, «святой вода

шывĕ», мăнастирсемпе чиркӳ çурчĕсенчи «святой стариксем», «Христос — Хĕрес тус» çинчен каланă халап-юмах тупăнать. Вара Аслати турă Илле пророк, Улăп паттăр Микул турă, Чура паттăр Мурăм Илли пулса каяççĕ.

XIX—XX ĕмĕрсенче çырса илнĕ хаймак-хачмакра тата ытти халапра вырăс тĕнĕн витĕмĕ вăйланса пырать. Куçарнă тĕн кĕнекисем урлă халăх сăмахлăхне кĕнĕ хачмак-халап авалхи сăмахлăх пĕлтерĕшне чакараймасть. Вĕсене пĕлсе ушкăнламалла тата хăш тĕн, хăш вăхăт сăнарĕ ӳкерĕнсе юлнине сăнамалла. Ăслăлăхпа пĕлӳлĕх хăвăрт аталанса пынă чухне те халăх чунĕ-юнĕнче авалхи халап-юмах сăнарлăхĕ упранса пурăнать. Ахăртнех, ăс валли ăслăлăх пур, чун валли — хайлалăх. Çавăнпа хивре сăнарлă, ăрăмлă, асамлă, паттăр ĕçсемлĕ хачмаксем, юмахсем этемлĕхре (уйрăмах ача-пăча хушшинче) сӳнмеççĕ, тĕрлĕ уявсенче, йăласенче, мешехесенче ӳнер ăстисене авалхи ӳкерчĕксем патне çавăрса тухаççĕ.

Хачмаксем йăх, ăру сăмахлăхĕ шутланнă, хаймаксемпе халапсем вара пĕтĕм халăх пĕлме тивĕçлĕ сăмах-юмах пулнă. *Хачмак шалти шухăшлавĕпе хаймак енне, илемлĕх мелĕсемпе юмах патне туртăнать.* «Легендарные по характеру эпизоды могут входить в сказку, подчеркивая тем самым сходство времени этих двух жанров. Вообще легенды этого типа часто относят к сказкам, во всяком случае это имеет отношение к собирательской практике» (Г.А.Левинтон. Легенды и мифы. 1988). Юмаха куçнă хачмаксем сахал мар. Хачмак ĕçсем чăнах пулнă тесе ĕнентерет, юмах вара каласа кăтартнисем пурнăçра пулманнине уççăнах систерет.

Вăхăчĕ енчен хачмаксем хаймаксенчен каярах, шухăшĕ-кăмăлĕпе вара пĕр çыхăнурах йĕркеленсе пынă. Хачмаксен тытăмĕ-сюжечĕ хаймаксенчен чылай ирĕклĕрех, тĕрлĕ енлĕрех. Хаймаксене улăштарса калама юраман. Хачмаксен асамлăхĕ хаймаксенчен йăвашрах, мĕншĕн тесен вĕсем Уçлăхри аслă турăсем çинчен мар, çĕр çинчи çынсемпе пулăмсем пирки кăна каланă. Пулса иртекен ĕçĕсем те тахçан авалхи мар, чылай каярахрисем. Хаймак вăхăчĕпе хачмак вăхăчĕ хушшинче истори тапхăрĕсем ылмашăнни аванах палăрать. Авалхи хаймак-хачмак чăваш тĕнĕ ытти тĕнсемпе тĕпрен хутшăнса кайманнине те кăтартать.

Халиччен хаймак, хачмак жанрĕсене уйăрмасăр «халап» сăмахпа палăртнин хăйĕн сăлтавĕ пур. Пĕр енчен, малтанах вĕсем иккĕшĕ пĕр майлах асамлă сăмахлăх пулнă. Вăхăт улшăннă майăн кăна хачмаксенче истори сĕмĕ палăрма пуçланă. Аслă турăсемпе тан паттăр несĕлсем мала тухса пынă. Тĕслĕхрен, ялсем, вырăнсем пулса кайни е унта çынсем пырса вырнаçни çинчен калакан хачмака Янăш, Мамăш, Чамăш паттăрсен ячĕсем кĕрсе юлнă. Чура паттăр ячĕпе çыхăннă ялсем (Чурачăк, Карачура, Чуракасси, Пайчура, Чураппан) те çак ретрех. Вĕсене пĕр чухне хачмак, тепĕр чухне историлле халап шутне кĕртме юрать. Сюжет вăхăчĕ Вăхăтченхи тапхăр тата шухăшлавĕ хайлалла пулсан тӳрех хачмак темелле. Хачмаксен ушкăнĕсем темиçе тĕрлĕ. Пĕрисем халăх тĕнĕпе сартăшпа çыхăннă, теприсем — тĕшмĕшпе (вырăсла — суеверипе). Шуйттан, арçури, вутăш, шывври, хеври, хĕрт-сурт, ийесем, пĕклесем, тухатмăш тата ыттипе хăйсем тĕл пулни çинчен каласа панисене курни-илтни е «курнăçке» (быличка) тейĕпĕр. Тахçан такампа пулни-иртни çинчен ыттисем каласа панине илтни-пĕлни е «илтнĕçке» (бывальщина) тейĕпĕр. Историн паллă вăхăчĕсемпе çыннисем çинчен калакан хайлава халапсен шутне кĕртни тĕрĕс.

Историре палăрса юлнă ĕçсене, çынсене, вырăнсене сăнарлакан халапсене — вĕсенче асамлăх, тĕлĕнтермĕш, вилӳ-чĕрĕлӳ пайрăмĕсем никĕсре

пулсан — халап шутне мар, хачмаксен ретнех лартмалла. Хаймаксемпе халапсем хушшинчи чикӗре вӗсем, ҫавӑнпа жанр тасалӑхне курма йывӑр. Хачмакран халапсем пулса кайнӑ тесе шутлаҫҫӗ (Народная проза. Вступ. ст. С.Н.Азбелева. — М.: Русская книга, Б-ка русского фольклора. Т.12. 1992. 17 с.).

Сӑмахлӑхра пӗр йышши хаймаксемпе хачмаксем сахал мар. Вӗсене вӑхӑт тӑрӑх палӑртса ушкӑнлама тивет. Авалхи Египет мифологийӗнче те пӗр пек хайлавсем пур. «Тӗнчене пултарни» мифа, сӑмахран, Гелиополь, Мемфис тата Геракль хулисенче кӑшт хӑйне майлӑрах калан̆ӑ. Е тата «Нила мухтани» мифсене вӑхӑтне кура пайланӑ: Вӑта патшалӑх вӑхӑтӗнчи тата Ҫӗнӗ патшалӑх вӑхӑтӗнчи мифсем тенӗ (М.Э.Матье. Древнеегипетские мифы. М.—Л.: Изд-во АН СССР, 1956).

**Хаймак.** Хаймак (миф) — этем аваллӑхне кӑтартакан сӑмахлӑхӑн хӑйне евӗрлӗ ӗссӗмлӗх (фантази) хайлавӗ. Хаймаксенче этемлӗхӗн чи малтанхи шухӑшлавӗ, философийӗ, тӗн вӗрентӗвӗ упранса юлнӑ. Тӗнчери ытти халӑхсенни пекех, чӑвашсен те анлӑ аталаннӑ хаймак сӑмахлӑхӗпе тӗнчекурӑмӗ (хайлалӑхӗ, мифологийӗ) пур. Ӗлӗксенче хаймаксене чӑваш Турӑ кӗнекинче ҫырни выраннех хунӑ, ҫавӑнпа вӗсене ӑруран ӑрӑва каласа хӑварнӑ.

Мӗн ҫинчен калаҫҫӗ-ха хаймаксем? Халӑх ӑс-хакӑлӗн малтанхи утӑмӗсем ҫинчен, вӑл тӗнчене мӗнле ӑнкарса, вӗренсе, ӑнланса пыни ҫинчен. Чӑваш халӑхӗ мӗн ӗҫпе пурӑнать? Ҫӗр ӗҫӗпе. Ҫавӑнпа чӑваш халапӗ-юмахӗ ҫынсем ҫӗре, шыва, чӗрӗ чунсене, ӳсен-тӑрана, выльӑх-чӗрлӗхе юратни, упрани ҫинчен калать. Ҫӗр ӗҫӗпе пурӑнакан ытти халӑхсен те ҫавах. Мӗн ҫинчен шухӑшланӑ, пӑшӑрханнӑ, ҫавӑн ҫинчен каланӑ. Ҫут тӗнчепе, ҫанталӑкпа пӗрле ҫаврӑнса пурӑннӑ пирӗн несӗлсем. Ҫавӑнпа юмахӗ-халапӗ, йӑли-йӗрки тӗнче, ҫанталӑкпа ҫулталӑк ҫаврипе пӗр килсе тӑнӑ.

Тахҫан пулса иртнӗ ӗҫсем, халапла паттӑрсем, несӗл пуҫӗсем, турӑсемпе ырӑ-хаяр ҫинчен шутлани урлӑ этем хӑй тавралӑхне, ҫут тӗнчене, пурнӑҫ тӗллевне ӑнкарса илме хӑтланнӑ. Сӑрт-ту, шыв-шур ӑҫтан тухнӑ? Тӳпере ҫӑлтӑрсем мӗнле ҫуталнӑ тата вӗсем мӗншӗн ҫӗр ҫине ӳкмеҫҫӗ? Аслати мӗншӗн кӗрлет? Чӗр чунсем тӗрлӗ: вӗтти пур, шултри пур, йӑвашши е ҫӑткӑнни пур, шӑваканни тата вӗҫекенни пур — кам ҫапла туса янӑ-ши вӗсене? Этем пӗрре хаваслӑ, тепре хурлӑхлӑ, пӗри телейлӗ, тепри инкеклӗ, чухӑн е пуян... Мӗншӗн ҫапла-ши? Паллах, пин ыйту вӑркан̆ӑ этем пуҫӗнче. Хӑй ӑнкарнӑ пек тупнӑ хуравӗсене вӑл, халап-юмах урлӑ ыттисене каласа панӑ.

Анлӑ сарӑлнӑ тема — тӗнчепе этем тата тӗрлӗ япаласемпе чӗрлӗхсем пулса кайни, пурнӑҫ пуҫланни, аталанни. Тӗнче пулни (космогони) хаймакӗсемпе пӗрлех тӗнче пӗтни, ахӑрсаман (эсхатологи) хаймакӗсем нумай. Ытти хаймак-халап та хирӗҫле мӑшӑрлӑхпа палӑрать: Чӗрӗ шывпа Вилӗ шыв, Ҫӑтмахпа Тамӑк, Ҫут тӗнчепе Леш тӗнче...

Авалхи хаймаксенче ӑс-пурлӑх аталаннине кӑтартни хӑйне евӗрлӗ. Вут тупни, чӗр чунсене, тискер кайӑксене алла илӗртни, ҫӗре акалама вӗренни, вӑрман касни, ӗҫ хатӗр-хӗтӗрӗ хатӗрлени йӑлтах этем аталанӑвӗн утӑмӗсемпе ҫыхӑнса пынӑ.

Яш-кӗрӗм пӗрлешни, ватти-вӗтти хутшӑнни ҫинчен те калать хаймак. Чӑвашсен авалхи сӑмахлӑхӗнче вӑйлӑ та паттӑр ҫынсем (геройсем) ҫинчен хывнӑ хаймаксем хӑйсем пӗр ушкӑна кӗреҫҫӗ. Вӑл паттӑрсем каллех икӗ ушкӑна пайланаҫҫӗ: пӗр паттӑрӗсем лайӑх пулсан, теприсем — усал. Ҫапла, сартӑш тӗн вӗрентӗвӗнче пур пулӑмра та икӗ енлӗх палӑрать.

**Тĕнчен хирĕçле мăшăрлăхĕ.** Чăваш хайли-халапĕсем Ырă-Хаярпа тачă çыхăннă. Чăваш тĕнĕн никĕсĕнче ырăпа хаяр çинчен вĕрентни выртать. Тĕнчере те, çынсем хушшинче те хирĕçле вăйсем пур. Пурнăç ырăпа усал, ырлăхпа хурлăх хушшинче иртет. Турăпа ырăсем ăна малалла аталантарасшăн, усалĕпе тĕселĕсем каялла туртма тапаçланаççĕ. Турра хирĕç Шуйттан тăрать, Пӳлĕхе хирĕç Сехмет çӳрет. Вĕсем икĕ тĕрлĕ сăмахлăх çуратнă: пĕрисене тĕн, теприсене тĕшмĕш халапĕ-хаймакĕ тесе палăртнă. Тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă сăмахлăх кĕлĕсем, сăрмансем, сăвапсем панă. Тĕшмĕш ăсталăхĕ аталанса пырса шаманла пулса кайнă: вĕрӳ-суру сăмахĕсем, чĕлхесем, калмаксем йĕркеленĕ. Пĕрисене кăнтăрла уççăн халăх умĕнче кăтартнă, теприсене çĕрле вăрттăн пĕччен каланă. Ĕлĕкрех тĕн хачмакĕсем нумай упраннă. XIX–XX ĕмĕрсенче тĕшмĕш халапĕсем вăйланса пынă. Халĕ те халăхра «леш тĕнче» юмахĕсене нумай илтме пулать.

Чăваш тĕнĕ-вĕрентĕвĕ тĕнче тытăмне ытти халăхсенчен чылаях урăхла курать. Тĕп уйрăмлăх — тĕнче тăватă енлĕ тесе вĕрентни. Тĕнчере Ырă тата Усал, Йăваш тата Хаяр хăватсем кĕрешнĕ, Çӳлти тата Аялти, Çутă тата Леш тĕнчесем пĕр пĕрлĕхре çаврăнса пурăннă. Ырăпа Усал тĕнчисен хирĕç тăрăвĕ çинчен вĕрентни ытти пĕтĕм пулăмсене хирĕçле тăрăмра кăтартать. Чăн пурнăçра пуррине ват маçаксем тĕрĕсех пĕлнĕ, хăйсен хаймакхалапне кĕртсе ăнлантарнă.

Пĕр йышшисене Ырă паллипе, теприсене Усал паллипе кăтартасси хаймак-халапсенче тӳрех курăнса тăрать. Тӳпе, Çутă, Шурă, Турă, Çăтмах — тасалăх тĕнчи. Усалăн хăйĕн карти — Нимми, Тĕттĕм, Хура, Шуйттан, Тамăк — тискер тĕнче. Этем тĕнчи те ырăпа хаяр çине пайланса тăрать. Çав хушăрах чăваш хайлисем ватта-вĕтте, хĕре-упраçа, яша-кĕрĕме, ара-арăма мăшăрлатса тан картаççĕ. Чăваш авалăхĕн сăмахлăхĕнче хĕре, арăма, карчăк-кĕрчĕке тиркесе, пĕчĕклетсе калани çук. Çаксем чăваш хаймакĕсемпе хачмакĕсенче тĕп вырăнта тăраççĕ. Ку вăл чăваш тĕнчекурăмĕн уйрăмлăхĕ. Паллах, ун йышши курăм пирĕн несĕлсемпе пĕр çул тăрăх куçнă ытти халăхсен те пур.

Хирĕçле мăшăрлăхсене чылай ушкăнсем çине уйăрса тишкерме пулать. Хайлалăхри хирĕçлетӳсене кĕскен çапла палăртăпăр:

Хăватсен хирĕçле мăшăрлăхĕ: Ырă—Хаяр, Турă—Шуйттан, Шывпа Вут, Сардон—Хурадон, Пирĕшти—Ийе, Упраççи—Хытăм т.ыт.

Вырăнсен хирĕçле мăшăрлăхĕ: Кăнтăр—Çурçĕр, Тухăç—Анăç, çӳлти—аялти, Çĕр—Пĕлĕт, сылтăм—сулахай, малта—кайра, шалта—тулта.

Вăхăтсен хирĕçле мăшăрлăхĕ: хĕлле—çулла, кун—çĕр, ир—каç, паян—ыран.

Халăхри хутшăнусен ăнлавĕсем тăрăх хирĕçлетни: асли—кĕçĕнни, тăван—ют çын, юлташ—тăшман, ăслă—ухмах, тӳрĕ—суя, таса—лапра, чĕрĕ—вилĕ.

Ытти пĕлтерĕшсене кура хирĕçлетни: çутă—тĕттĕм, аçа—ама, ăшă—сивĕ, вăрăм—кĕске, типĕ—нӳрĕ, хура—шурă.

Хирĕçле ушкăнсен ретне чылай тăсса кайма пулать. Хăяхван ламшар çырнисене пăхас пулсан, чăваш чĕлхин «малалла-каялла вуламалли» кăтартмăшĕнчех сăмах пĕлтерĕшĕсен хирĕçле тытăмĕ пур (Общество, государство, религия. Чебоксары: ЧГИГН, 2002. С. 108). Çав таблица тăрăх авалхи Месопотами, Нил тăрăхĕнче çырăнса юлнă йĕкĕр пайлă чылай пайăр ята «чăвашла» вулама пулать.

**Аваллăх халапĕсен ушкăнĕсем.** Сăмахлăх жанрĕсене хăйсен паллисем, тымар йĕрĕсем тăрăх палăртаççĕ. Мĕн çинчен тата мĕнле калани, мĕнле шухăша, кĕвве мала кăларни жанрсене палăртнă чухне пĕлтерĕшлĕ. Пĕр жанра пĕр паллă тăрăх, теприне тепĕр паллă тăрăх уйăрни çителĕксĕр. Тема тăрăх пулсан — пурне те тема тăрăхах ушкăнласа тухмалла. Хавхи е сăнарĕ тăрăх пулсан — ыттисене те çав енченех пăхмалла.

Жанра тĕрлĕ паллисене пурне те шута илсе, нумай енлĕн пахаласа ушкăнлани тĕрĕсрех. Хаймак-хачмакпа халап-юмах тĕпчевĕн хăйĕн çирĕпленнĕ мелĕ, меслечĕ, ăслайĕ пур. Авалхи жанрсене ушкăнланă чухне «хăйлалăх вăхăтне» (историченхи е мифла вăхăта) шута хумалла. Мĕнле вăхăт вăл? Сĕм авалхи вăхăт. Вăхăтченхи вăхăт, мĕншĕн тесен сăмах этем çулсене шутлама та пĕлмен тапхăрсем çинчен пырать.

Тепĕр ăнлава та шута илмелле. Хайласа кăларнă халапла паттăрсем (миф геройĕсем) пирĕн пек мар. Вĕсем вилĕмсĕр. Вĕсем улăпла паттăрсем. Вĕсем чĕрĕлсе тăма пултараççĕ.

Ку чухнехи ăслăлăх халап-хаймаксене çапла ушкăнлать.

1. Т ĕ н ч е п у л ă м (космогони) х а й м а к ĕ с е м. Ку ушкăна тĕнче пăтравĕнче (хавăсра) Уçлăх тытăмĕ йĕркеленнине, Çĕр, вут, сывлăш, тӳпе, çăлтăрсем пулса кайнине ăнлантаракан хайласем кĕреççĕ. Тĕнче хавăсĕнчен (хаосĕнчен) шывпа çĕр уйăрлнине, унтан çĕрпе пĕлĕт пайланнине çуталакан хайласене малтанхисем тесе шутламалла. Икĕ хирĕçле хăвата — ырра тата хаяра — ĕненнипе çуралнă тĕнсем (вăл шутра чăваш тĕнĕ те) Çӳлти тата Çут Тĕнчесене Турăсемпе Ырăсем пултарнă, Леш Тĕнчене Шуйттансемпе Усалсем ярса илнĕ тесе вĕрентеççĕ.

Тĕнчепулăм хаймакĕсем йышлă, çавăнпа вĕсене татах пĕчĕк ушкăнсене уйăраççĕ.

Уçлăхри япаласемпе пулăмсен (астрогнози) хаймакĕсем. Çăлтăрсем, Хĕвел, Уйăх, Хур кайăк çулĕ, Кăвак хуппи, Шуçăм çинчен хывнă хайласем чи авалхи тĕнчекурăма палăртса тăраççĕ, чи авалхисем шутланаççĕ.

Уçлăхри Çăлтăрсем малтан хăйсен йĕркине тупайман, пăтранса çаврăннă, вĕресе тăнă. Турă вĕсене кашнине хăйĕн çирĕп вырăнне тупса панă. Çăлтăрсем малтан çынсемех пулнă, вĕсем каярахпа кăна çӳле хăпарнă та пирĕн маçаксен чунĕсене упраса пурăнаççĕ тени те пур (Элкер çăлтăр çинчен калани). Алтăр çăлтăр çич çăлтăрлă тата Ала çăлтăрултă çăлтăрлă тăрса юлнине (Ала çăлтăрăн пĕр çăлтăрне Хурпа Сĕт турăсем хăйсем патне илнĕ пулать) çуллапа хĕлле уйăхĕсемпе, ăшăпа-сивĕпе танлаштараççĕ. Таса чунсене Хур кайăк çулĕпе (Сĕт турă пулăшнипе) Çăтмаха телей курма ăсатаççĕ тени те кăсăк. Вăл авалтанах килнĕ пулсан — питĕ хаклă. Чăвашсем çăлтăрсене хăçан ят хума пултарнине пĕлме май памĕçши? Чăваш сăмахлăхĕнче Хĕвеле асла хураççĕ, вăл çынран пулса кайнă чухне çав териех пысăк хисепе тивĕçеймен пулĕччĕ. Хĕвел (Вут) несĕл пуçĕсенчен, Ваттисенчен пысăкрах хăват. Паттăр несĕлсем хăйсем те Хĕвеле пуççапнă.

2. Т ĕ н ч е у ç л ă х ĕ н т ы т ă м ĕ (космологи). Чăваш хаймакĕсем виçĕ тĕнче çинчен вĕрентеççĕ. Çӳлти тĕнчере — хĕвелпе çăлтăрсем патĕнче — турăсем пурăнаççĕ. Çут тĕнчере — Çĕр çинче — çынсемпе чĕр чунсем, пĕтĕм ӳссе тăракан чĕрлĕхсем аталанаççĕ. Кунтах ырăсемпе хаярсем этем тĕнчи тавра çӳреççĕ. Леш тĕнчере — Тĕттĕм нимминче — шуйттансемпе усалсем аппаланаççĕ. Çĕр çине Çӳлти тĕнчерен те, Леш тĕнчерен те ыră-хаярсем килсех тăраççĕ.

3. Çут тĕнчене пултарнине (этиологие) кăтартакан хаймаксен ушкăнĕ пуринчен те пысăк. Чăваш хайлалăхĕ тĕнче Уçлăхĕ малтанах пулнă, ăна никам та туман тесе калать.

Тĕнчене Турă пултарнă е арпашăнчăк çанталăка (хавăса) Турă йĕркелесе тухнă пулать (креаци мелĕ). Турăсемех шывпа пăс пăтранăвĕнчен юшкăн тăпри кăларттарнă, утравсемпе çĕр тунă. Тепĕр йышши хаймаксем Тĕнче çăмартаран пулса кайнă теççĕ. Ку мелпе пултарнине аталану çулĕ (эволюци) тесе палăртаççĕ.

Çĕр пичĕ (ландшафт) хаймакĕсем çĕр тĕнĕлĕ, кăвапи, йывăçĕ, сăрчĕ, çырми-çатри çинчен калаççĕ. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче вĕсем сахал мар. Пурнăç йывăçĕ, Уша юпи çинчен каланисем вĕсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Ӳсен-тăран (фитогони) хаймакĕсем йывăç-курăк, çимĕçсем мĕнле пулса кайнине ăнлантараççĕ. Çĕр ĕçĕпе пурăнма пуçланă çынсем тыр-пул таврашне асамлăхпа пиеленĕ. Чăвашшăн ӳсен-тăран тĕнчи — чĕрĕ, йывăç-курăкра несĕлсен чунĕсем упранни çинчен калаççĕ халапсем.

Чĕр чунсем (зоогони, тотем), кайăк-кĕшĕк (зооним) ăçтан çуралса ӳснине авалхи этем хăйне майлă сăнарлатса панă. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче вĕсем хушшинче ырă пиллĕ чĕрĕлĕх нумай. Тиркевлĕ, сиенлĕ чĕр чунсем çинчен хывнă хаймаксем те сахалах мар.

4. Этем пулса кайни (антропологи). Çынсем хăйсем чăн малтан мĕнле пулса кайни çинчен ĕлĕк те, халĕ те нумай шухăшланă, ăслăлăх ку ыйтăва халĕ те татса парайман-ха. Хими катализĕн мелĕпе чĕрĕлĕх çуратма пултарни этем вăрттăнлăхне палăртма пултарасса шанаççĕ. Кунтах халап паттăрĕсем, несĕл пуçĕсем, йĕкĕрешсем çинчен калакан хаймаксем кĕреççĕ. Пĕр йышшисем Этеме Турă, Хавал пултарнă тесе ăнлантараççĕ. Теприсем вара вăл хăй тĕллĕн ним çукран аталанса йĕркеленнĕ пек калаççĕ.

Халăхсем пулса кайнине (этногони) ăнлантаракан хаймаксем чăваш хайлалăхĕнче йышлах мар.

**Ĕçпе ăспурлăх (культура) хаймакĕсем** çынсен кулленхи тыткаларăшĕпе, этеплĕх-хисеплĕхпе, ĕçпе (выльăх-чĕрлĕх ĕрчетни, çĕр ĕçĕ, вăрман хуçалăхĕ, пулă тытни т. ыт.), ал ĕç ăсталăхĕпе çыхăннă.

5. Ахăрсаман (тĕнче пĕтни, эсхатологи) хайлалăхĕ. Чăваш сартăшĕнче тĕнче куллен улшăнса, çитĕнсе е ватăлса пыни çинчен каланă. Пачах улшăнманни нимĕн те çук. Пĕр йышши пулăмсем хăвăрт пулса иртеççĕ, теприсем вăрахран тин палăраççĕ. Усаллăх тулса ларсан тĕнчене Ахăрсаман çиет. Унăн тасалма тивет. Хайла-халапра Ахăрсаман çинчен сахал мар каланă. Вăл малтан та пулнă, татах пулма пултарнине калаççĕ.

6. Леш тĕнче хаймакĕсем пурнăçран кайнă чун Леш тĕнчене лекет тесе вĕрентеççĕ, çынна курăнман тĕнчен тĕрлĕ ӳкерчĕкĕсене кăтартаççĕ. Леш тĕнче пысăк. Вăл ырă чунлисемшĕн çӳлте, Çăтмахра, айăпа кĕрсе вараланнисемшĕн — аялта, Тамăкра. Çӳлти тĕнче пекех, Аялти тĕнче те нумай хутлă. Масар, Хăямат, Кахăр, Çĕр мимми, Çĕр тĕпĕ тата ытти пур унта. Ку хаймаксем сартăш тĕнĕпе тӳррĕнех çыхăннă.

7. Турăсен (теогони) УШКĂНĔ. Турăсен карти (пантеонĕ) пысăк, тата вĕсем çинчен калакан хайласем йышлă. Грексен пекех, чăвашсен те Турă умĕнче упракан, сыхлакан çурма турă пек хăватсем: кӳретсем, кĕтнеççисем, упраççисем, сыхчисем — тăнă. Апла пулсан та Аслă Турă, унăн кил-йышĕ хайла-хачмака пайăр ятсемпе кĕрсе юлайман. Сăлтавĕ паллă: чăваш тĕнĕ юлашки вăхăтченех вĕсене ют çынна калама чарса (табуласа) тăнă. Чăваш сартăшĕ Турăпа Ырă ячĕ тăшман хăлхине кĕрсен вĕсен хăвачĕ

пĕтет тесе вĕрентнĕ. Ытти хăш-пĕр тĕнсенче те çаплах пулнă. Ун пек халăхсен турри-ыррисен сăнĕсем паллă мар. Грексен туррисем çын сăнарлă. Чăвашăн Тур мучийĕ кăна шур сухаллă карт. Ыттисем куçа курăнмаççĕ. Вĕсем — таса шульăш, этем туйни, сисни, сăмахпа е сăрăпа кăтартма çук хăват. Шывпа çĕре, хĕвелпе çăлтăрсене, вутпа кăвара пултарнă Турăсем хыççăн аслă вырăнта ама турăсем тăнă. Аслă Турă умĕнче тăракан Кепе турра, сăмахран, шухăшра та хисеплемесĕр тăма юраман: «Кепе — анне, ăна кӳрентерме юрамасть», — тет чăваш паян та.

Турăсем пекех, хисеплĕ вырăнта несĕл ваттисемпе пӳренсем, кĕтнеççисем, сыхчисемпе упраççисем тăраççĕ. Ырă та таса вăйсем çынна малалла аталанма, сывлăхлă, ăслă, кăмăллă, ĕçе юрăхлă пулма пулăшаççĕ, упраса тăраççĕ. Ун пеккисем йышлă: Пӳлĕх, Пирĕшти, Хайпӳрен, Хĕртсурт, Карта пуçĕ. Çакăнтах ийесемпе йĕрĕхсем кĕреççĕ, анчах вĕсем тирпейсĕрсене, юхăнчăксене юратмаççĕ — чирлеттереççĕ, тытаççĕ, шăнтаççĕ. Пĕрех те вĕсем — ырă вăйсем.

8. Паттăрсен ушкăнĕ. Паттăрсене ырлакан хаймаксем чăвашсен авалхи грексенни чухлех мар, анчах вĕсем йышлă, сăпатлă. Вĕсем хăйсем те маттур, ĕçĕсем те чыслă, хура халăха юрăхлă. Йĕкĕреш паттăрсем çинчен калани те пур. Халапри паттăрсем пурнăçа лайăхлатас тесе тăрăшаççĕ: вут тупаççĕ, кĕпер хываççĕ, халăха юрататççĕ, хатĕр-хĕтĕр туса параççĕ, тăшманран хăтараççĕ, хӳтĕлеççĕ. Улăп паттăр вĕсенчен чи палли те авалхи.

9. Хаярсем. Хаярсемпе (пананимонипе) усалсем (хтоника) çĕр çинче нумай. Хаярсем çынна йăнăш тунăшăн айăплаççĕ. Усал та вĕчĕх вăйсем çынна ура хураççĕ, йăнăш çулпа кĕрсе кайма хĕтĕртеççĕ. Вĕсем халăха килĕшӳрен кăларса пăрахасшăн. Çăткăнланма, хирĕçме, ĕçрен пăрăнма, вăрлама, ĕçме, çапăçма илĕртеççĕ. Хаярсене ӳкĕтлесе, калмак каласа, юсман парса, чӳклесе çавăрма пулать тенĕ авалхи чăваш. Çавăнпа вĕрӳ-суру чĕлхи çуралнă, ăрăмăçсемпе тухатмăшсен хăйсен шаманла сăмахлăхĕ аталаннă. Паллах, ăрăмлă чĕлхе, сунăмпа сулăм, ӳкĕтпе ылхан сăмахлăхĕ те хайлалăх ретнех кĕрет.

10. Усал-тĕсел ушкăнĕ. Итлемен чуна хăратма Турă çĕр çине тĕрлĕ тытан-хытан йышне (пандемониум) туса янă. Вĕсен шутĕнче — вупăр, вутăш, арçури, аçтаха, алпастă, шыври, тилçе, типер, кăрмасан, вупкăн, шатăм, вĕре çĕлен тата ыттисем.

Хаймаксенче малтан ырă хăват пулнă, анчах Турă умĕнче айăпа кĕнĕ хыççăн хаярсем патне анса ӳкнĕ ырă-хаяра асăнаççĕ. Малтанах Шуйттан, Киремет, Хепри тата ыттисем Çӳлти патшалăхри ырăсем шутланнă. Кайран хаяра тухнă. Çапла, çĕр çинчи çынсем пекех, ырăсемпе хаярсем те тĕрĕслĕхпе суялăх хушшинче кĕрешеççĕ. Унта та тĕрĕслĕхшĕн кĕрешсе шар куракансем пур. Унта та суяпа мала тухакансем тупăннă.

Эсрел, сехмет, йĕрĕх, арçури, явăл, вупăр, ийе, вĕре çĕлен, шыври, вутăш, шуйттан, кăрмасан, чăкарми, шатăм, хытăм тата ытти усал-тĕселпе чĕмересем çинчен каланисем тата тухатмăшсемпе пăскăнчăксем çинчен хывнă хайлалла калавсем («курнăçке» е «былички», «илтнĕçке» е «бывальщины» жанрĕсем) хăйсем уйрăм ушкăна кĕреççĕ. Вĕсене пĕтĕмĕшле «тĕшмĕш халапĕсем», «имĕш-тимĕш» тата «тет сăмахлăхĕ» тени вырăнлă. Вĕсем тĕн картинчен тухса сăмахлăхăн хăратса ăс паракан, ĕрет-нĕсепе упрама, ырра-усала уйăрма хистекен кĕске юмахсем пулса тăнă.

**Хайла-халапри пайăр ятсене палăртасси.** Авалхи сăмахлăхра тĕл пулакан ятсемпе чĕнĕмсене хут çинче палăртнă чухне иккĕленӳсем сиксе тухаççĕ. Пĕр сăмахах пĕринче пайăр ят пĕлтерĕшĕпе çӳрет, тепринче — ахаль

сăмах кăна. Тĕслĕхрен, мифсенчи «турă» ăнлану тĕрлĕ пĕлтерĕшпе тĕл пулать. Пĕри ятпа çыхăннă, вăл пысăк сас паллипе çырăнать. Сăмахран, «Турăпа Пӳлĕх» е «Турă ватă çын пулса ана çинче утса çӳренĕ». Тепри — пĕтĕмлетӳпе çыхăннă, «çĕр çинчи турăсем». Виççĕмĕш — турă ятне каланă чух пĕчĕкрен çырăнаканни. Тĕслĕх, «Пихампар турă». Ку ăнлану уйрăмах кĕçĕн турă ячĕсемпе килĕшӳллĕ. Тăваттăмĕшĕ — юлашки иртнĕ ĕмĕрсенче миф çинчен каласа паракансем арпаштарса «бог» пĕлтерĕшĕпе кĕртнĕ сăмах.

Чăваш мифĕсенче çынпа чĕр чун кăна мар, пур япала та чĕрĕ пулса уйрăммăн сăнарланать. Вĕсемпе пĕрле çут çанталăк та, унăн вăйĕ те хăйне евĕр сăн-питлĕ. Тепĕр чух кĕске сăмах çаврăнăшĕнчех пĕр сăмахах ик-виç пĕлтерĕшлĕ пулма пултарать. Сăмахран, «çĕре пултариччен çĕр çинче Çĕрпе Тӳпе арлă-арăмлă пулнă». Кунта пĕрремĕш «çĕр» тĕнче ăнланăвĕпе çыхăннă, иккĕмĕшĕ — çын утса çӳрекен вырăн, виççĕмĕшĕ пурнăç пуçарăвĕчченхи е пуçланиччченхи çĕре пĕлтерет. Нумай ăнланура çĕрпе Тĕнче пĕр пĕлтерĕшлĕ. Пĕрпеклĕх Тӳпепе Пĕлĕтре те палăрать. Çав вăхăтрах пĕчĕкрен çырнă тӳпепе пысăкран çырни йăлтах урăхла ăнланусем. Çапла, Пĕлĕт виçĕ, çичĕ и тăхăр сийлĕ: çил пĕлĕчĕ, тăм пĕлĕчĕ, юр пĕлĕчĕ т.ыт.те. Малтанхи сăмах Тӳпе пĕлтерĕшĕпе çыхăнса хăй темиçе пĕлĕтрен тăрать.

Асăрханă ăнланусем, паллах, паянхи литература чĕлхине пăхăнса тăмаççĕ. Апла пулин те вĕсенче нимĕнле йăнăш та шырама кирлĕ мар. Вĕсене хальхилле тӳрлетме пуçласан эпир миф тытăмне çĕмĕрнĕ пулăттăмăр. Çакна май сăнарлăх вăйĕ те хавшакланса юлнă пулĕччĕ е япала ячĕ юлсан та, унăн сăн-пичĕ çухалать. Çавăнпа та ĕнтĕ мифри хăват, пĕр енчен, авалхи пысăк вăйпа чăмăртаннă, тепĕр енчен, вăл калама çук черчен. Çакнашкал черченлĕх самана, общество, культура, шухăшлав, ăнлану аталанăвĕсемпе çыхăннă. Паян эпир сĕм ĕмĕрсенчи чăнласах шанса ĕненнĕ сисĕм-пулăма ăнланма тăрăшсан та ăна этемлĕх аталанăвĕнчи мифсем çуралнă тапхăрти çын евĕр туйса илме пултараймастпăр. Çапла хамăр тавçăрса илейменнине кура пулăмсене паянхи калаçу виçи витĕр кăларса тӳрлетме пикенетпĕр. Хăш-пĕр çырса илекенсем — вĕреннĕ çынсем — пархатарлă ĕç тунă. Çав вăхăтрах хăйсем «ăслине» пула нумай-нумай мифсене «лайăхлатса» пăснă. Çакă тытăмпа сăнарта çеç мар, сăмах çаврăнăшĕсемпе уйрăм ăнланусенче те уççăн палăрать. Сăмахран, хăйсен кӳлепипе шалти шăнăрне упраса хăварнă мифсенче эпир «Çĕр, Тĕнче туни» тесе мар, «Çĕр, Тĕнче пултарни» сăмах çаврăнăшĕпе тĕл пулатпăр. Ытларах «пуçланнă» мар, «пуçарăннă», «Тĕнче алăкĕ» е «хапхи» мар, «Тĕнче хуппи», «Пĕлĕт, Тӳпе уçăлни», «Кăвак хуппи» тесе вулатпăр. Сăмахсарсенче «Хĕрт-сурт», «Вут чуль», «Çавра çил» сăмахсене уйăрса çыраççĕ пулсан, кунта пысăкран тата пĕрле çырни, Вутăша Путăш тени тĕл пулать. Кăтартнă тĕслĕхсем пурте чăваш мифĕсен хăйсен уйрăм чĕлхе пуррине кăтартса параççĕ. Çакна асра тытса вулаканăн кунта йăнăш кайнă, унта тĕрĕс мар çырнă тесе каламалла мар. Кĕнекере май килнĕ таран çав вăрттăнлăхсене те шута илме тăрăшнă.

**Мифсен чĕлхе, сăнар, кӳлепе тытăмĕсем.** Тĕрлĕ ушкăнсене уйăрнă мифсемпе халапсем хушшинче малтанхи рете Тĕнче пĕр нимĕскерсĕрех хăйне хăй пулса кайни çинчен калаканнисем кĕреççĕ. Çак паях Тĕнчене никам та, нимĕн те пултарман, вăл яланах, ĕмĕр-ĕмĕрех пулнă тенисене хушаççĕ. Иккĕмĕшĕнче — Çĕр кайăк-кĕшĕкпе чĕр чунсем пулăшнипе пуçарăнни çинчен каланисем. Ăна зооморфла пай теççĕ. Тепринче этем тĕп вырăнта. Ку — антропоморфли. Тăваттăмĕшĕнче Тĕнчене Турăпа Пӳлĕх тата

Усал (Шуйттан) пултараççĕ. Пиллĕкмĕш ушкăнра несĕлсемпе паттăрсем тата Улăп тăраççĕ.

1917 çулччениxи кĕнекесенче тĕнче пулса кайнине яланах Турăпа çыхăнтарма тăрăшнă. Турă яланах пулнă, тĕнче те ĕмĕрех пулнă тенĕ. Çак икĕ ăнланăва уйăрма юрамасть имĕш. Анчах XVIII—XIX ĕмĕрсенче К.С.Милькович, В.А.Сбоев çырса илнĕ ĕçсенче «турă» сăмах пачах та çук.

Совет тапхăрĕнчи ăслăлăхра ку ăнланăва çут çанталăкран уйрăлса тăман материализмпа пĕрлештерме пăхнă. Çав вăхăтрах, наука вĕрентнĕ тăрăх, «никам та пултарман, яланах пулнă» теекен мифсем сĕм авалхи хавшак шухăшлавпа çырлахăннă. Ун чухне «турă» ăнлану пулман. Çавăнпа та вăл тĕнче тума пултарайман.

Нумай-нумай халăхсен мифĕсемпе мифологине тишкерекен паллă ăсчах М.И.Шахнович çапла çырать: «Тĕнчене пултарнă ăнлану чи авалхи шухăшлав сирĕлсен е этемлĕх аталанăвĕ çӳллĕ шая çĕкленсен çеç çуралать». Çак сăмахсене асра тытса эпĕ чăвашсен халăх пултарулăхĕнче сĕм авал пуçарăннă шухăшлав сыхланса юлнă тесе каласшăн.

Çак ăнлану тата общество аталанăвĕпе вăл мĕнле майпа упранса юлма пултарни пирĕншĕн чи пысăк ыйту, мĕншĕн тесен малтанхи мифсен тĕп-йĕрне пĕлни ыттисен кун-çулне уçса пама пулăшать. XVIII ĕмĕр вĕçĕ халăхшăн та, унăн шухăшлав аталанăвĕшĕн те çав тери кăткăс та йывăр тапхăр пулнă. Ун чухне христианствăна ирĕксĕр йышăнтарасси тепĕр хут вăйланса каять. Мусульманствăна йышăнасси те çаплах çухалмасть-ха. Ют тĕнрен хăтăласшăн нумай-нумай чăваш урăх çĕрсене саланать. Чăваш диаспори пулса кайнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри — ют тĕнрен тарни. Çавнашкал саманара сĕм авалтан килекен халăх шухăшлавĕ, пĕр енчен, мăкалса, арканса пырать, тепĕр енчен, уйрăм-уйрăм вырăнта вăл хăйне хăй хӳтĕлеме тăрăшать. Ку пулăм ытларах урăх тĕнсене сивленĕ çĕрсенче пулса пырать, çавăнпа та «тĕнчене никам та туман» ăнлану XVIII ĕмĕрччен пурăнма пултарнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Анчах ку тĕп сăлтав мар. Пичевре урăххи пур. Паллă мар япалан тупсăмне тупас тесен кайрантарах е тепĕр тапхăрта пуçарăннă мифсем çине таянас меслетпе усă курмалла.

Чăваш халăх пултарулăхĕнче мифсен хăйне евĕрлĕ тепĕр пысăк ушкăнĕ пур. Унта Турă этеме тăмран унаса тăвать те ун валли чун шырама каять. Çапла вара, миф каланă тăрăх, çĕр çинче этем пуличчен ăçта-тăр унăн малтанхи сăнарĕпе чунĕ вырнаçнă имĕш.

Çак ăнланупа пĕрлех тĕнчене икĕ хирĕçле вăй пултарни анлăн сарăлнă. Пĕри — ырри — Турăпа Пӳлĕхçĕ, тепри — усалĕ — Шуйттан сăнарĕпе сăнарланнă. Мифсенче çапла каланă: малтан, тĕнче пуçланиччен, йĕритавра шыв выртнă, пĕр лаптăк çĕр те пулман. Турăпа Пӳлĕх (упăшкипе арăмĕ) пĕр-пĕринпе калаçса татăлса Çĕрпе Тӳпе пултарма шухăш тытнă. Турă шыв айĕнчен хăйăр илет те кĕвелĕк тăвать. Унтан çак кĕвелĕке шыва ярса йӳçĕтме ыйтать. Пӳлĕхĕ вара чăнахах та çапла тăвать. Шыв çăралса хытма пуçлать. Çак вăхăтра ку ĕçе часах Шуйттан хутшăнать. Вăл Турăпа Пӳлĕх пултарнине пăсас тесе чăрсăр вăйлă çил хускатать. Хытса ĕлкĕреймен çĕр çинче пысăк хумсем хăпара-хăпара каяççĕ. Çапла вара тусемпе сăртсем, юхан шывсемпе тинĕссем пулса тăраççĕ.

Усал-Шуйттан Турăпа Пӳлĕх пултарнине яланах пăсса çĕмĕрет. Вăл вĕрсе кăра çил хускатман пулсан çĕр çийĕ тикĕс те такăр пулнă пулĕччĕ. Çапла Шуйттан хăй çинчен те, Турă пуррине те аса илтерсе тăрать. Çавăнпа та

Тĕнче пултарнăранпах тăвалла хăпарнă чухне çынсем Турăран пулăшу ыйтаççĕ, аялалла аннă чухне усал сăмахпа Шуйттана асăнаççĕ.

**Мифсен йăлари вырăнĕ.** Авалхи чăвашсен мифĕсем тĕн тытăмĕпе тачă çыхăннă. Вĕсене тĕн йăли-йĕркине тытса пынă чухне пуринчен те ытларах каланă. Каланă чухне вара çирĕпленнĕ йĕркесене çирĕп тытса пынă. Сăмахран, чӳк пăтти çинĕ чухне ун çине вĕрме юраман. Çав вăхăтрах тухатнă е пăснă чухне «вĕрмелле» те, «сурмалла» та пулнă. Вĕрӳ-суру чĕлхи йăлтах çак йĕркене пăхăнса тăрать. Тата çакна палăртса хăварас килет, тухатмăш, юмăç, мăчавăр хăйсен сăмахĕсемпе мĕн тунине йăлтах Ашапатманпа Аша çине йăвантарнă. Пĕр енчен, ку мел çылăхран хăтăлма пулăшнă, тепĕр енчен, Ашапа Ашапатман чи хăватлă вăйсем шутланнă. Вĕсем вĕрни-сурни кирлĕ çĕре çитмеллех пулнă.

Миф тĕнпе, ĕненӳпе çыхăнни çинчен калакан нумай-нумай тĕслĕх тĕнче пултаричченех тĕнче сăнарĕ этем чунĕ пекех тахçан малтан пулнă текен шухăшлава çирĕплетсе парать.

Тĕнчене пултарни çинчен калакан мифсем икĕ хирĕçле вăй çине таянса тăраççĕ. Çав вăхăтрах Турăпа Шуйттан хушшинче килĕшӳлĕх те пур. Турă Тĕнче пултарнă чухне Шуйттан кăмăл-шухăшне те шута илме тăрăшать. Вăл шыв айĕнчен пылчăк илме Шуйттана хушать. Анчах вĕсен хушшинче ĕмĕр-ĕмĕр чарăнми хирĕçӳ пырать. Ахальтен мар тăвăл е çавра çил тухсан Турă Шуйттана хăвалать теççĕ.

Тĕнчене икĕ хирĕçле вăй (Ырăпа Усал) — Турăпа Пӳлĕх тата Шуйттан пултарни çинчен калакан миф хăйĕн ăнланăвĕпе Авалхи Иранри зороастризм вĕрентĕвĕпе çывăх. Зороастр каланă тăрăх, пур япала та икĕ хирĕçле вăй — ырăпа усал çапăçнипе пулса кайнă. Ахурамаздăпа унăн сывлăшĕ — ырăсем, вĕсене хирĕç пыракан кĕçĕн турăсем — усалсем.

«Миф живет до тех пор и только до тех пор, пока в него верят, и любая критическая аналитика, а тем более скепсис невозможны внутри мифологии, если же они становятся возможными — невозможным становится сам миф», — теççĕ тĕпчевçĕсем (М.А.Можейко. Мифология // Новейший философский словарь. Минск, 2001. С. 635). Этемлĕх хайла-халапсăр пурăнаймасть. Халĕ ăслăлăх вирлĕ аталанса кайнă, халапсемпе аппаланма кирлĕ мар текен те пур. Анчах çак сăмах тĕнче аталанăвĕ çинчен сахал шухăшлакан çынран кăна тухма пултарать. Авалхи хайла-халаппа хальхи ăслăлăх тĕпчевĕсем этемлĕх умĕнче нихçан та çухалман ыйтăва — этем мĕн тума пурăнать, тĕнче мĕнле çулпа пырать, çут тĕнче хăçанччен тытăнса тăраять тенисене хурав пама кирлĕ. Авалхи чăвашсем те, ацтексем те Хĕвел хăçан та пулин ывăнса çитет, халран каять тесе шутланă, ăна упрас, вăй парас тесе чӳк тунă. Хĕвеле ăсчахсем «сарă карлик» кăна теççĕ, вăл чăнах та кашни самантра пилĕк мегатонна хăват салатать, çавăнпа иксĕлсе пырать. Хĕвел 7,5 миллиард çултан сирпĕнсе каять тесе шутлаççĕ.

Тĕнче улшăнмасăр тăмасть. Çав улшăнăва философилесе ăнкарма этемлĕхе авалхи хайлалăх та кирлĕ пулнă. Халĕ те кирлĕ.

*А.А.ТРОФИМОВ,*
*В.П.СТАНЬЯЛ*

# I. ТĔНЧЕ ТЫТĂМĔ

*Тĕнчепе Çут тĕнче пулса кайни çинчен калакан хаймаксем (космогони мифĕсем) йышлă. Вĕсем хăйсем пĕчĕкрех ушкăнсем çине пайланаççĕ. Пĕрремĕш ушкăнĕ — тĕнче хăй тĕллĕн, никам тумасăрах пулса кайни çинчен калакан хайлавсем. Иккĕмĕш ушкăна тĕнчене Турă тунă е хăй пултаракан текен хайлавсем кĕреççĕ.*

*Тĕнче Уçлăхĕ (космос), Çӳлти тĕнче, Çут тĕнче, Леш тĕнче тытăмĕнче пултаракан ырă хăватсемпе аркатакан усал вăйсем пĕр-пĕринпе кĕрешеççĕ. Çав кĕрешӳ хаймаксемпе хачмаксенче палăрса тăрать.*

## ТĔНЧЕ ПУЛСА КАЙНИ

### 1

Тĕнче мĕнле пуçланса кайни çинчен чи ватă мăчавăрсенчен хăшпĕрисем кăна каласа пама пултараççĕ. Тĕнчене, тĕнче уçлăхне тата унти вăй-хăвата никам та туман, вĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех пулнă. Ĕмĕрех пулаççĕ. Этем ăна пĕлсе пĕтерейместь. Этемĕн авалтан пурнăç тума май панă мĕнпур вăй-хăвата ырăласа хисеп тумалла.

### 2

Чи малтан тĕнчери хавăсра (хаосра) пĕлĕтпе шыв кăна пулнă. Унтан хĕвел, уйăх, çĕр, çăлтăрсем пулса кайнă.

### 3

Тĕнче тытăмĕ çичĕ хутлă. Вĕсенчен виççĕшĕ Çĕртен çӳлелле, тăваттăмĕш хучĕ Çĕр пичĕ пулать, ытти виççĕшĕ — аялта, çĕр айĕнче. Вилнисем çĕр айĕнчи çиччĕмĕш хутра пурăнаççĕ. Вĕсен вырăнне «çич çĕр мимми» теççĕ.

### 4

Тĕнче малтанах пулнă. Анчах та ун çинче нимĕн те пулман. Çĕрне те малтан виçĕ кит йăтса тăнă тет. Çĕртен çӳлерех пĕр пĕлĕт анчах пулнă. Каярах вара çĕр çинче шыв, вут, çил хăвачĕ вăй илсе пынă. Çав вăхăтрах

Ҫут тӗнчене пӗр Улӑп пырса лекет. Ҫӗре чӗтретсе ҫӳренӗ пирки китсем Ҫӗре ҫӳлелле ывӑтса янӑ тет. Ҫавӑнпа халӗ Ҫӗр сывлӑшра ҫӑмха пек ҫаврӑнса ҫӳрет.

**5**

Чӑвашсем тӗнчене пӗрре пулнӑ чухнех ҫапла пулнӑ ӗнтӗ вӑл, темӗн те пӗр куҫа курӑнакан япала, темӗн те пӗр куҫа курӑнман япала тесе хисеплеҫҫӗ. Тӗнче епле-епле пулнине никам та пӗлсе никам каласа параймасть. Тӗнче епле пулнӑ, кам тунӑ-ши ӑна тесен «Тӗнчене Турӑ тунӑ»,— теҫҫӗ.

# ТӖНЧЕНЕ ПУЛТАРНИ

## Шывпа Ҫӗр

**6**

Малтан, тӗнче пуличчен, шывпа ҫӗр хутӑш пулнӑ. Йӗри-тавра нимӗн те курӑнман, тӗттӗм пулнӑ. Пӗррехинче Турӑ сӑмах каланӑ: «Ҫӗрпе шыв уйрӑлччӑр», — тенӗ. Вара вӗсем уйрӑлнӑ.

**7**

Малтан тӗнчере шыв тата ҫӑлтӑрлӑ тӳпе кӑна пулнӑ. Ҫӗр ниҫта та курӑнман. Вӑл шыв айӗнче питӗ тарӑнра выртнӑ.

Тата пӗр Турӑпа пирӗштисем пулнӑ. Вӗсемпе пӗрле пӗр явӑл — Шуйттан ҫӳренӗ. Вӑл Турра тек-текех улталама та сиенлеме хӑтланнӑ.

Пӗртен-пӗр Турӑ пӗринче утса ҫӳремелӗх Ҫӗр пултарма шутланӑ. Ӑна пултарма унӑн шыв айӗнчен кӑштах та пулин юшкӑн кӑлармалла пулнӑ. Темшӗн Турӑ юшкӑна хӑй кӑларасшӑн пулман. Кимӗпе ишнӗ чухне вӑл пирӗштисене пылчӑк илме шыв айне темиҫе те чӑмтарнӑ. Пирӗштисем нумай хут чӑмса пӑхнӑ, анчах пӗри те юшкӑн илсе тухайман.

Шуйттанӗ тек Турӑ тавра явкаланнӑ, тӑпра илсе тухатӑп тесе каланӑ. Турӑ ӑна шанман, ҫавӑнпа ку ӗҫе хушасшӑн та пулман. Юлашкинчен вара Шуйттана шыв айӗнчен юшкӑн илсе тухма ирӗк панӑ. Лешӗ самантрах чӑмнӑ та ҫаварӗпе пылчӑк илсе тухнӑ, ӑна Туррӑн алӑ тупанӗ ҫине сурса кӑларнӑ. Турӑ юшкӑн ҫӗре тӗрлӗ еннелле сапаласа тухнӑ. Сапаланнӑ Ҫӗр тӗпренчӗкӗсем часах пур ҫӗрте те пысӑкланма пуҫланӑ.

Сасартӑк Турӑ леш Шуйттанӗн пит ҫӑмартийӗ хӑпарса кайнине асӑрханӑ. Шуйттан илсе тухнӑ юшкӑнне йӑлтах сурса кӑларман иккен, шӑл хыҫне пытарса хӑварнӑ. Шуйттан мӗн хӑтланнине чухласа илнӗ Турӑ явӑла тута урлӑ панӑ. Лешӗн тута хӗрри татӑлса кайнӑ, хытса ларнӑ ҫӗр татӑкӗ тухса ӳкнӗ, вара юн юхма пуҫланӑ. Юн тумламӗсем ӳкнӗ ҫӗрте ҫӗнӗ явӑлсем ҫуралнӑ тӑнӑ. Вӗсем пит нумай пирки шутласа кӑларма та май килмен.

Турӑ явӑла юратман пулсан та хӑйне пулӑшнӑшӑн шывра тата ҫӗр айӗнче пурӑнма ирӗк панӑ, анчах ҫӗр ҫине час-час тухма чарнӑ.

**8**

Чи малтан тӗнчере пӗлӗтпе шыв анчах пулнӑ, пӗлӗчӗ ҫӳлте, шывӗ аялта пулнӑ. Унтан пӗлӗт тӳпинчех хӗвел, уйӑх, ҫӑлтӑрсем пулса тӑнӑ. Шывсем айӗнче ҫӗр пулнӑ, ҫӗр айӗнче вут ҫуннӑ, унта тамӑк хуранӗ

пулнă. Пĕлĕт ҫинче Мăн Турă хăйĕн йышĕпе тата Пирĕшти текен тарҫисемпе пурăннă. Пĕлĕт ҫинчех кĕҫĕн турă Пӳлĕх пурăннă. Пирĕштисенчен чи асли, Шуйттан ятли, Турă ирĕкĕнчен тухса ăна итлеми пулнă, ăна хирĕҫ тăнă, вăл хай тĕнче хуҫи пулма тăрăшнă. Ҫаваншăн ăна Турă хăйĕн тарҫисем пулăшнипе пĕлĕт ҫинчен хаваласа антарса ҫĕр тĕпнех, тамăках кĕртсе янă.

Ҫавăн хыҫҫăн Турă пĕлĕт айĕнче утса ҫӳремелли пултăр тесе шывсем хушшинче типĕ ҫĕр тума шухăш тытнă. Типĕ ҫĕр тумашкăн шывсен, тинессен тĕпĕнчен пылчăк илсе тухмалла пулнă. Турă хăйĕн кимми ҫинчен пирĕштисене пĕрин хыҫҫăн теприне пылчăк илме тинĕс тĕпне чăмтарнă. Анчах пирĕштисенчен нихăшĕ те пылчăк илсе тухайман. Тамăкра шывсен тӳпине тухнă Шуйттан Турă мĕн тунине курсах тăнă. Вăл: «Эпĕ пылчăк илсе тухма пултаратăп», — тесе мухтаннă. Турă Шуйттан тамăкран хăй ирĕкĕпех тухнăшăн пит ҫилленнĕ, ăна каллех тамăка хăваласа яма шутланă. Вăл Шуйттана шанман та, унран пулăшу та илесшĕн пулман. Анчах пирĕштисем пылчăк илсе тухайман пирки Шуйттана шыва чăмма ирĕк панă. Лешĕ чăмнă та куҫа уҫса хупиччен пылчăка ҫăварне хыпса илсе те тухнă. Тухсан вăл пылчăкне Туррăн ывăҫĕ ҫине сурса панă. Турă пылчăка шыв ҫинелле сапаласа янă. Ăҫта пылчăк ӳкнĕ, ҫавăнта тип ҫĕр пулса ӳсме тытăннă. Ҫапла шывсем хушшинче типĕ ҫĕрлĕ утравсем пулса тăнă, шывсенчен тинĕссем, океансем, кӳлĕсем пулнă. Тĕнче ҫичĕ хутлă пулса тăнă, висĕ хучĕ ҫĕртен ҫӳлерех, тăваттăмĕш хучĕ — ҫĕр пичĕ тата виҫĕ хут ҫĕр питĕнчен аяларах выртассĕ.

Анчах Турă пылчăк сахаллине, ҫавăнпа типĕ ҫĕрсем ҫителĕклĕ маррине асăрханă. Вăл Шуйттан ҫине шанмасăр пăхнă та лешĕн пит ҫăмартисем шыҫнă евĕрлĕ тулли пулнине курнă. Вăл Шуйттан пылчăка пĕтĕмпех паманнине, вăрласа хăварнине пĕлнĕ. Турă Шуйттана ҫӳлти тутинчен ҫапнă. Шуйттанăн тути ҫурăлсах кайнă, ҫăварĕнчен пылчăк тухса ӳкнĕ тата юн юхса аннă. Ҫав юн ăҫта пĕрĕхнĕ, ҫав вырăнта шуйттан ҫурисем пулса тăнă. Ҫапла вара пĕр Шуйттанран вĕҫĕ-хĕррисĕр урăх шуйттансем пулса тăнă.

Шуйттан Туррăн тăшманĕ пулнă пулин те, Турă ăна ҫĕр тума пулăшнăшăн шывра пурăнма та, хутра-ситре ҫĕр ҫине тухса ҫӳреме те ирĕк панă, анчах час-часах тухма хушман.

Ҫав вăхăтран пуҫласа шывсенче шывра пурăнан чĕр чунсем, ҫĕр ҫинче типĕре пурăнан чĕр чунсем ĕрчеме пуҫланă. Вĕсен хушшинче йытă, кушак, ҫĕлен тата урăххисем те пулнă.

## 9

Тĕнче малтан тĕпсĕр-йĕрсĕр пулнă, пĕрмай пăтранса тăнă. Ҫав йĕркесĕр япалана Хăямат тенĕ. Хăямат ҫиче пуҫласкер пулнă. Унтан тата Мăртăк (Мартук) пулнă, вăл нимрен те хараман. Мăртăкпа Хăямат вара тем пек хытă вăрҫă кăларнă.

Мăртăк, Хăяматăн пĕр татăкĕ те ан ҫухалтăр тесе, пĕтĕм тĕнчипе ҫирĕп таната карнă, кăнтăр еннелле те, ҫурҫĕр еннелле те, хĕвел тухаҫепе хĕвел анăҫ еннелле те. Вăрҫă хатĕрĕсемпе сап-сутă тумланса, вутлă лашасем кӳлсе Хăямата хирĕҫ вăрҫма тухса кайнă.

Хăямат хăрушшăн кăшкăрса ярать, пĕтĕм тĕнчене чĕтретет, Мăртăка ҫăтса ярас тесе ҫăварне карса пăрахать, анчах Мăртăка ҫăтма ĕлкĕреймест. Ҫăварне хупса лартиччен Мăртăк ун ăшне вайлă ҫавра ҫил кӳртсе ярать, ҫав вăхăтрах хăй ун чĕрине сăнăпа персе тивертет. Хăямат вилет.

Мăртăк ун вилли сине тăрать те унăн юлташĕсене тытса вĕсене хупса лартать. Унтан Хăямата пулла каснă пек тарăх касать те пĕр енчен пĕлĕт тăвать, тепĕр енчен сĕрпе çĕр тĕпне тăвать. Хĕвел, уйăх, çăлтăрсем, çĕр шăварма çумăр пĕлĕчĕсем пултарать, юлашкинчен тампа хайĕн юнне хуташтарса малтанхи сынсене арлă-арăмлă пултарать.

## 10

Хăямат ятлă хăват пурăннă тет. Вăл Мăртăк ятлă асамçăна вĕлерет те унăн пĕр пайне пĕлĕт тăвать. Тепĕр пайне çĕр тăвать.

Пĕлĕчĕ вара çав вилнĕ çыннăн куçĕ тĕслĕ пулать. Çумăр çуни унăн куççулĕ пулать. Куççулĕ юха-юха Çĕр çине тăкăнать те çĕре хытарать. Çавăн хыççăн Çĕр утса çÿреме юрăхлă пулнă.

## 11

Сут тĕнчене Турă тунă. Пĕрремĕш кунне вăл çĕрпе пĕлĕт, тепĕр кунне ирпе каç, унтан хĕвелпе уйăх, çумăр, юр, тепĕр кунне хĕлле, çулла, кĕркунне, кайран чĕр чунсем, чи юлашкинчен вара этеме пултарнă. Çапла тĕнче пулса кайнă.

## 12

Ёлĕк çĕр çинче Турă пурăннă тет. Пурăнсан-пурăнсан вăл хайне япăх туйма пуçлать, хăйĕнпе каласма никам та пулман. Çавăнпа тĕнче туса хурать. Çав тĕнчере вара çынсем пурăнма пуçлаççĕ.

## 13

Тĕнче мĕнле пулса кайнине никам та тĕрĕс калаймасть. Ёлĕкхи çынсем тĕнчене Турă тунă тесе шутланă.

Тĕнче çичĕ хутлă. Чăн çÿлти хутĕнче пахча пур. Турă тата пирĕштисем çавăнта пурăнаççĕ. Вара çылăхсăр çынсем, çăтмаха лекекенсем, çав пахчара çÿреççĕ.

## 14

Тĕнче çичĕ хутлă, вĕсенчен виçĕ хучĕ — çĕрпе пĕлĕт хушшинче, тăваттăмĕшĕ — çĕр. Тепĕр виçĕ хучĕ çĕр айĕнче. Вилнисен чунĕсем çиччĕмĕш хутĕнче, çĕр тĕпĕнче. Çĕр айĕнче вут çуннă, унта тамăк хуранĕ пулнă.

## 15

Виçĕ тĕрлĕ тĕнче пур, çын пурăнакан тĕнче — Çĕр, усалсем пурăнакан тĕнче — Тамăк тата Турă пуранакан тĕнче — Çăтмах.

Турă тĕнчинче вăхăт сук, унти тĕнчере Турă, Турă йышĕсем. Вилĕмсĕр Турă тĕнчи çÿлте, унта, Турă йышĕсемсĕр пуçне, çылăхсăр çынсен, суралман ачасен чунĕсем пурăнаççĕ. Сут тĕнчере вара вăхат пур. Кунта пурте вăхăтпа пурăнаççĕ. Хăйсен ĕмĕрĕнче суралаççĕ, вилеççĕ, саланаççĕ. Ку тĕнчери пурнăçа Турă йĕркелесе янă. Пурнăс кунта вăхăтра пулса иртет. Йĕркине Турă пăхса тăрать.

Тата виççĕмĕш тĕнче — Леш тĕнче пур. Кунта çын пурнăçне салатакан, сын ĕçне варалакан, сиен тăвакан усалсем пурăнаççĕ. Кунта çутă

çукпа пĕрех. Çичĕ хĕвел пулсан та вĕсем кăвар пĕрчисем пек сес сутатассĕ. Сутă тĕнчерен сĕр витĕр кăшт кана сутă пайăркисем сăрхăнса кĕреççĕ. Ку тĕнчере вăхăт пур. Анчах кунти вăхăт çут тĕнчери вăхăтран хулленрех иртет. Вилнĕ сынсен чунĕсене кунта асаплантараççĕ, тепĕр чух вĕсене кунтан кăларса та яраççĕ. Леш тĕнчери пурнăс Турă тĕнчине хирĕсле майпа пырать, анчах Турăран хăрать.

## 16

Тĕнчере 77 тĕн теççĕ, 77 чĕлхе теççĕ, 77 тĕслĕ кайăк теççĕ, 77 тĕслĕ йывăç, 77 тĕслĕ хурт-кăпшанкă, 77 тĕслĕ пулă, 77 тĕслĕ этем, 77 тĕслĕ чул теççĕ пирĕн чăвашсем. Турă вăл ĕлĕк хăй те çĕрте пурăннă, ун чухне пĕлĕт те аялта пулнă. Тата 7 хут пĕлĕт, 7 хут çĕр теççĕ. Çĕр çавракине вăкăрпа пулă çĕклесе тăрать теççĕ, çĕр айĕнче вăкăр, вăкăр айĕнче пулă теççĕ, пулă айĕнче шыв. Тата çăлсем кăçтан тухаççĕ: аслă тинĕс шывĕ çĕр айне анать те çавă тымар тăрăх килсе тухать.

## 17

Чи малтан Турăпа Пӳлĕхрен пуçне урăх никам та пулман, нимĕн те пулман. Турăпа Пӳлĕх иккĕшĕ пĕрле ларса канаш тунă та пĕлĕтпе çĕре пултарас тенĕ. Вĕсене пултарнă чух Турă каласа тăнă, Пӳлĕх вăл каланине туса тăнă. Чи малтанах пур çĕрте те шыв анчах пулнă, типĕ çĕр ниçта та пулман. Çав шыв çине Турă Пӳлĕхе кĕвелĕк яма хушнă, Пӳлĕх кĕвелĕк ярсанах çĕр хыта пуçланă. Анчах Шуйттан çĕр лайăх хытса çитиччен вăйлă çил вĕртсе çĕре хумхантарнă та, вара тусем, сăртсем, лупашкасем, çырмасем, тинĕссем пулса юлнă. Çапла ĕнтĕ Шуйттан Турăпа Пӳлĕх ĕçне кураймасăр пăсса анчах тăнă; çав Шуйттан вăйлă çил вĕртмен пулсан çĕр тип-тикĕс пулнă пулĕччĕ. Шуйттан ăна ак мĕншĕн тунă, çĕр тикĕс пулсан Турра та, мана та асăнмĕç, анаталла аннă чух мана асăнĕç тенĕ. Вăл чăнах та çапла, пĕр-пĕр çын тăвалла лавпа хăпарнă чух: «На, на, на! Атя, Турă пулăштăр сана», — тет. Анаталла аннă чух лаши лавне чараймасăр чупма тытăнать те, çынни вара çилленсе çитсе калать: «Тăр! Шуйттан, чарăнмасть тата», — тет. Çавăнпа анаталла аннă чух лаша чупасран пит сыхланас пулать, вăл ун чухне Шуйттан хĕтĕртнипе чупать.

## 18

Тĕнче сичĕ хутлă, вĕсенчен виçĕ хучĕ — çĕрпе пĕлĕт хушшинче, тăваттăмĕш хучĕ — сĕр пичĕ, тепĕр виçĕ хучĕ — çĕр айĕнче.

Чи малтан тĕнчере пĕлĕтпе шыв çеç пулнă. Пĕлĕчĕ çӳлте, шывĕ аялта пулнă. Унтан кайран тин пĕлĕт тӳпинчен хĕвел, уйăх, çăлтăрсем пулса тăнă. Шывсем айĕнче çĕр пулнă, çĕр айĕнче вут çуннă, унта тамăк хуранĕ пулнă. Пĕлĕт çинче Мăн Турă хăйĕн çыннисемпе пурăннă. Туррăн тарçисем пирĕштисем пулнă. Вĕсен асли Шуйттан ятлă пулнă. Вăл Турра итлеме пăрахнă, ăна хирĕç тăнă. Çавăншăн Турă ăна çĕр çине хăваласа антарса янă. Турă пĕлĕт айĕнче утса çӳремелли пултăр тесе типĕ çĕрсем тума шутлать. Типĕ çĕр тума Турă тинĕс тĕпĕнчен пылчăк илсе тухма хушать. Анчах пирĕштисем илсе тухаймаççĕ, вара Турă Шуйттана чăмма ирĕк панă. Лешĕ илсе тухнă та Туррăн ывăçĕ çине сурса панă. Турă пылчăка шыв çинелле сапаласа янă. Вот вара ăçта пылчăк ӳкнĕ, çавăнта тип çĕр пулса тăнă. Çĕр малтан

тип-тикĕс пулнă. Утма çăмăл пулнăран этем Турра мухтанă. Анчах Шуйттанăн та ыр сăмах илтес килнĕ иккен, мĕншĕн тесен шывран пылчăк илсе тухаканĕ вăл пулнă-çке. Çавна май вăл чее шут тытать, хăйĕн ятне асăнмалли мел шыраса тупать. Турă патне каять те çапла калать: «Эсĕ, Турă, кăлăхах çĕрĕн питне тикĕс турăн, этемсем яка çулпа çӳреççĕ те сана аса та илмеççĕ. Çĕр çинче тусем кирлĕ. Ту пулсан этем тăвайккине хăпарнă чухне: «Эй, Турă, çак ту çине чипер улăхма пулăш», — тейĕ. Туран аялалла аннă чухне учĕсем хытă чупма тытăнсан вĕсене чарса: «Эй, Шуйттан!» — тейĕ. Турă вара Шуйттан сăмахне итленĕ. Халĕ эпир, чăнах та, ту çине хăпарнă чухне Турра асăнатпăр, çырманалла аннă чухне — Шуйттана.

## 19

Ĕлĕк-авал çĕрпе шыв тата пĕлĕт пĕр пулнă теççĕ. Турă шутларĕ-шутларĕ тет те çĕре тăвата пая пайлама паллă турĕ тет. Хĕвел тухăçĕ енчи пĕлĕте шăтарса уçрĕ тет те вĕрчĕ тет. Турă сывлăшĕпе пĕлĕт çӳлелле хăпарчĕ тет. Каялла ан антăр тесе вăрăм авăрлă алтăрпа шыври çăра çĕре ăсса пĕр çĕре, тепĕр çĕре хучĕ тет. Алтăрпа ăсса хунă çĕрте сăрт-ту пулчĕ тет. Хайхи çӳле йăтăннă пĕлĕте аяла ан антăр тесе çӳллĕ ту çине хучĕ тет. Унтан кăнтăр, хĕвел анăç, çурçĕр пайĕсене çавăн пек турĕ тет. Çакăнтан вара тĕнче пуçăнса кайнă теççĕ. Çĕрпе шыв тата пĕлĕт çакăнтан уйрăлчĕç тет вара.

## 20

Малтан тĕнчере шыв кăна пулнă. Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс. Чĕр чунсем пурте шывра пулнă. Унтан вĕсен çĕр çинче те пурăнас килет, вара вĕсем пурте пухăнаççĕ те çĕре епле тумалли çинчен шухăшлама тытăнаççĕ. Пĕри те пĕлмест. Пĕр пĕчĕк кайăк кăна: «Эп пĕлеп», — тет. Вăл шыв тĕпĕнчен пĕчĕк сăмсипе виçĕ хут анса çĕр илсе хăпарать. Кайран вăл ӳсет те хытă çĕр пулса тăрать.

## 21

Ĕлĕк çĕр шыв айĕнче пулнă. Турă шыв айĕнчен пĕр ывăç хăйăр илнĕ те унтах лăкаса кĕвелĕк тунă. Кĕвелĕкне шыва янă. Вара шыв кĕвĕлсе хĕрĕх кун хушшинче çĕр пулса тăнă.

## 22

Ĕлĕк-авал çĕр пачах та пулман, пур çĕрте те шыв пулнă. Шыв çинче икĕ кăвакарчăн çеç пулнă. Вĕсем шыв çийĕн вĕçсе çӳренĕ. Кăвакарчăнсем шыва чăмса çĕр чăмаккине сăмсисемпе туртса кăларнă. Вĕсене пулăшма шывран виçĕ кит тухнă та çĕре хăйсем çине хума хушнă.

Халĕ те çĕр виçĕ кит çинче тытăнса тăрать. Çĕр йĕри-тавра вĕçĕ-хĕррисĕр шыв.

## 23

Хальхи çĕр вырăнĕнче ĕлĕк-авал шыв пулнă тет. Пĕр тĕлте кăна ура пусмалăх типĕ çĕр пулнă тет. Пĕрре Турă хăйĕн ачисене çут тĕнче тăрăх ярать. Ачисем килеççĕ тет те: «Анне, шыв варринче пĕчĕк лаптăк çĕр кортăмăр. Çаванта пĕр пĕчĕк чĕр чун кĕшĕлтетет», — теççĕ. Турă вара шывпа çĕре уйăрас тесе шотлать. Вара çĕр пулса кайнă тет.

## 24

Вĕçсĕр-хĕрсĕр тинĕсе пĕр кăвакал вĕçсе килсе ларнă, шыва чăмса шыв тĕпĕнчен юшкăн илсе тухнă. Çав юшкăнран çĕр туса янă. Çĕр суралнă кун асла уяв, чӳк асăннă. Пĕрремĕш аслати авăтсан çĕр чĕтренсе вăранать тенĕ. Курăк шăтнă вăхăтра авăтсан çĕр пĕтĕленнĕ тенĕ. Çĕрĕн пуçĕ те, пĕвĕ те, кăкăрĕ те, кăвапи те пур теççĕ.

## 25

Çĕр тăвата кĕтеслĕ, таçта инçе кайсан вăл çыран пек анса каят тет. Çĕрĕн хĕрринче хальччен никам та çитсе курман тет; унта сĕм тĕттĕм, хăрушă çыран таçта çити çĕрĕн тĕпне анса каят тет. Çĕре темиçе пуçлă çĕлен тĕревлесе тăрат тет.

## 26

Çынсем çĕре вăкăрăн хăрах мăйраки çинче тăрать тенĕ. Вăл хăрах мăйраки ырсассăн тепĕр мăйраки çине куçарать тенĕ. Çавăн чух çĕр чĕтренни пулнă тет.

## 27

Çĕре виçĕ тимĕр шапа тытса тăнă. Çĕр йывăр пулнă пирки пĕр шапи ывăннă. Вара вăл текех тĕревлесе тăман, çĕр айĕнчен тухнă. Ун вырăнĕнче çĕр путса анса кайнă та, çав вырăна шыв илнĕ, тинĕс пулнă.

## 28

Тĕнче сĕтел пек тикĕс. Тĕнче хĕрри пĕлĕт хĕррипе пĕрлешсе пĕлĕте пĕкĕ пек кукăр çавра тăвать. Кăна хĕвел анса хăпарнинчен питĕ лайăх курма пулать. Хĕвел пĕр енчен хăпарать те тепĕр енчен çĕр çине анса ларать.

Çĕр каçиччен хĕвеле Шуйттан ачисем çĕрĕн тепĕр енĕпе тӳрĕрен турттарса каяççĕ. Ирпе каллех çӳлелле тĕксе хăпартса яраççĕ.

Кăвак пĕлĕт хытă. Кăвак пĕлĕт хыçĕнче хĕвел, уйăх, çăлтăрсем Турă хăвачĕпе пурăнаççĕ.

## 29

Пирĕн патри чăвашсем çĕр тăваткăл пулнă теççĕ. Вăл тăвата вăкăр çинче тытăнса тăнă. Питĕ пысăк пулнă вăл, пăхсан вĕçĕ-хĕрри курăнман. Пĕррехинче пĕр çамрăк тĕнче хĕррине шырама кайма тухнă. Каять-каять, вĕçне çитеймест. Килĕнче тăванĕсем кĕтеççĕ ачана. Çук та çук тет. Вара: «Ку ача çĕр хĕррине çитсе сиксе вилчĕ пуль», — тесе каларĕç тет.

## 30

...Турă çĕре пит тикĕс тума тапратнă. Унтан ăна Шуйттан каланă:

— Çырмасем ту, вара çырмасене аналла аннă чух лашисене: «Тпр! Шуйттан лаша чараймасть», — тесе калĕç, — тенĕ. — Тата тăвалла хăпарнă чух: «Турă, пулăшсам», — тесе калĕç. — Вара сана та, мана çырма урлă каçса хăпарнă чух асăнĕç, — тенĕ пулать.

### 31

Çĕр малтан тип-тикĕс пулнă. Этемсем çатма пек тӳрем çулсемпе савăнса çӳренĕ. Турра мухтанă, тав тунă.

Шуйттан этемсем унăн ятне асăнманшăн кăмăлсăр пулнă, çилленнĕ, вăл çĕре пултарнă чух пылчăк илсе тухнăшăн этемсем ăна та асăнмалла тесе шухăшланă. Юлашкинчен вăл, чееcкер, этемсене хăйĕн ятне асăнма вĕрентмелли ăс шыраса тупнă. Вăл Турă патне пынă та йăпăлтатса çапла каланă:

— Эсĕ, Турă, кăлăхах çĕрĕн питне тикĕс турăн; ун пирки этемсем тӳрем çулсемпе çăмăллăн çӳреççĕ те сана йăлтах манса кайрĕç, санăн ятна асăнмаççĕ те. Хăш çĕр çинче тусем те пулччăр. Ту пулсан этемсем тăвайккине хăпарнă чухне: «Эй, Турă, çак ту çине чипер улăхма пулăшсам», — тейĕç. Туран аялалла аннă чухне учĕсем хытă чупма тытăнсан вĕсене чарса: «Тпр-р, Шуйттан!» — тейĕç. Çапла сана та асăнĕç, мана та манмĕç, — тенĕ.

Турă Шуйттан сăмахĕсемпе килĕшнĕ. Вăл çӳллĕ тусемпе тарăн çырмасем пулма хушнă. Туррăн сăмахне итлесе çӳллĕ тусем, тарăн çырмасем пулса тăнă, çатма пек тикĕс çĕр пичĕ пĕр тӳпере те юлман, тăвайккисĕр çул та çуккă, пĕтнĕ. Шуйттанăн ĕмĕчĕ çитнĕ, халĕ этемсем, чăнах та, ту çинелле хăпарнă чух Турра асăнаççĕ, çырманалла аннă чухне Шуйттана аса илеççĕ.

## Шыв, тинĕс, юхан шыв, кӳлĕ

*Чăваш хайлалăхĕнче Шыв çинчен хывнă халап йышлă. Тĕнче Хавăсĕнче (хаосра) малтан Шыв кăна пулнă, ун айĕнчен Çĕр тупса кăларнă. Тĕнчери Шыв çинчен каланă хушăрах Çут тĕнчери тата Леш тĕнчери юхан шывсемпе кӳлĕсем çинчен хывнă сăмахлăх та пур.*

*Çут тĕнчери (Çĕр чăмăрĕ çинчи) шывсене (тинĕсе, юхан шыва, кӳлле, шывлă-шурлăхлă путăксене) пултарнине çак ушкăнран уйăрма çук. Вăл халапсенче Турăпа танах Этем те тăрăшать: вăл кашни пулăма ят парса тухнă, куллен е вăхăтран вăхăта тумалли йĕркесене, сăмахсене çирĕплетнĕ. Чылай халап вăхăт иртнĕçемĕн çĕнелсе пынă, анчах çав хайлаллă халапсенче авалхи сăнарлăх çирĕпех курăнса тăрать. Шыв калмакĕнче, тĕслĕхрен, Шыва чĕрĕ тесе ĕненни пур. Ача-пăчана е çынна шывпа шӳтлеме юраманнине вĕрентсе мар, асамлă хăватсене хисеплени урлă хăнăхтарнă.*

*Ку пайра паллăрах кӳлĕсемпе Атăл пулса кайни çинчен каласа хăварнă. Шыв-шур халапĕсем пĕтĕмĕшле «Çут тĕнче» пайри «Шыв-шурпа кӳлĕ» сыпăка кĕреççĕ.*

## Шыв

### 32

Çĕр айĕнчи пĕр вату хăват шывпа хуçа пулнă тет. Пĕррехинче вăл çывăрса каять те шыв питĕркĕчне питĕрме манса каять. Шыв çĕр çине тапса тухать те лупашкасене тулать, темĕн пысăкăш çырмасене тулать. Çапла вара тинĕссем, юхан шывсем пулса кайнă. Çапла çĕр çине шыв илет.

## 33

Шыв йышĕ çапла: Шыв турри, Шыв усалĕ.

*Шыв туррисен йышĕ:* Шыв ватти, Шыв ашшĕ, Шыв амăшĕ, Аслă шыв, Кĕçĕн шыв, Таса шыв, Ырă шыв, Ырă шыв амăшĕ, Шыв пӳлĕхçи, Çĕр-шу кĕтен, Çĕр-шыв тытакан, Шыв турри умĕнчи ырă, Сывлăш шыв, Çăкти вутăш, Шывра пурăнакан ырă, Шыв вăкри, Шыв автанĕ, Шыв лаши, Юрах шыв турри.

*Шыв усалĕсем:* Хура шыв, Шыв качаки, Шыв вăкăрĕ, Шыв сехмечĕ, Шыв синкерĕ, Шыв тытни, Шыв тум хаярĕ, Шыв хаярĕ, Шыв хаяр амăшĕ, Шыв упи, Шыв вутăш, Шыв калти, Шыв шăтăкĕ, Шыв шуйттанĕ, Юхха, Ювха.

Шыв туррин йышĕ тарăн авăрта йывăç пӳртре пурăнать тет. Шыврисем туй тунă вăхăтра шыв пăкăртатса тăрать тет. Шыв туррине чӳк туса асăннă тет. Çуркунне-кĕркунне çыранран тухсан ватса çĕмĕрсе хăварма хушман тет. Çĕртсе яма хушман, ыйтман.

Шыв йышĕ тарăн çĕрте, шыв айĕнче пурăнать тенĕ.

## 34

Вилĕ шыв çынна пăсать, чĕртмест. Чĕрĕ шыв çынна чĕртет тет. Вилĕ шыва вилĕ çынна çунтарнинчен илнĕ. Чĕрĕ шыва Турăран илнĕ. Чĕрĕ шыв выльăх-чĕрлĕхе те, вилнĕ çынна та чĕртме пултарать, вăй парать. Вилĕ шыва шурлăха кайса тăкнă.

Чĕрĕ шывпа çынсене чĕртнĕ. Вара çынсем тата чипертерех пулнă тет, тата нумай вăй пухнă.

## 35

Шу çине сорма йорамаç. Шыври тытать. Е тата шу кӳренет теççĕ. Шу икĕ тĕрлĕ пулать тенĕ ĕлĕк: чĕрĕ шу, вилĕ шу. Чĕрĕ шу — сиплĕ вăл.

## 36

Шыв тытни тĕрлĕрен пулать. Ытларах чухне шыв урлă вăрçсассăн шыв тытать. Анчах та урăхла та пулать. Енчен те пĕр-пĕр çĕртен шыв ĕçнĕ чух: «Ку шыва ĕçмелле-ши, ĕçмелле мар-ши?» — тесе шутласан та шыв тытать.

Шыв тытсассăн ăна çырлахтармалла. Çырлахтарма çăкăр ямалла тет тата хĕрĕх пĕр пулă пусĕ. Енчен те çырлахмасан вăл çын питĕ йывăр чире кайма пултарать.

## 37

Кирек ăçти шу патне те хăраса, таса вырăна кайнă пек каяççĕ. Çăлкуç панче хытă калаçмаççĕ, кулмаççĕ, шу тытать.

## 38

Кирек ăçта çул çинче шыв ĕçсессĕн çав шыв ан тыттăр тесе: «Эп ĕçмен, пĕр вырăспа пĕр майра ĕçнĕ», — тесе шыв çине кирек мĕн сапса хăварнă.

39

Кĕçĕн шыва çапла каласа йăлăнаççĕ: «Выльăх-чĕрлĕхе ĕçме-çиме сывлăхне пар. Çырлах, аминь».

40

Ача-пăча шыва каять. Вăл хăрать. Унăн вара чĕри те урăхланать.

Шыв тытсан çак сăмахсене калаççĕ: «Ача шыва кайман, ача вырăнне акă ача тăршшĕ çĕлен çип, ача мар, çĕлен çип шыва кайнă».

Çăкăр сăмси, ача тăршшĕ çĕлен çип, виçĕ çӳç пĕрчи, кĕпе тӳми шыва яраççĕ.

41

Шыв тытать. Шыв тытасран: «Эп ĕçмес, ват вырăспа ват майра ĕçет», — теççĕ тет. Ĕçсе тăрансан тав тăваççĕ: «Эп ĕçмерĕм ку шыва, ват вырăспа ват майра ĕçрĕç», — теççĕ. Унтан виçĕ хут курăк татса шыва пăрахаççĕ, аллинче çăкăр пулсан тĕпретсе пăрахаççĕ. «Каçар мана, ан тив. Каçар мана, ан тив. Пехиллеттерсе каятăп», — теççĕ.

42

Çын шывран хăрасан шыв тытнă ăна теççĕ. Ун хыççăн вăл пĕрмай шăрса ярать. Çын тӳрлентĕр тесен Шыв ашшĕпе Шыв амăшне парне памалла.

Пуçламан çăкăр кĕтессине касса илмелле. Ăна виçĕ пая пайламалла, унтан каснине тата виçĕ пая. Çыннине лартса кашни виçĕ татăкĕпе пуçĕ тăррине хĕвеле май çиччĕрен пĕрре çитиччен шутласа виçĕ хут çавăрмалла. Унтан каç пулсан, çын курман чухне, ăçта хăранă, çавăнта кайса ямалла. Кайнă чухне те, килнĕ чухне те çынпа калаçас çук. Янă чухне мĕнле хăранă пулсан та: «Шыв ашшĕ, Шыв амăшĕ, каçар мана», — темелле.

## Тинĕс

43

Тахçан сĕм авал çĕр пичĕ пашалу пек пулнă тет. Ăна шыв çинче виçĕ кит хăйсем çинче тытса тăнă тет. Варринчи кичĕ ывăнса çитнĕ те çĕр айĕнчен тухнă. Кит тухса кайнă çĕрте çĕр авăнса ларнă та, çав вырăна шыв илнĕ. Çав шыв илнĕ вырăнта вара тинĕс пулса кайнă.

44

Хытă кĕрленипе Аслатин хăлхи япăх илтет. Кайнă Турă патне çумăр хăçан çутармаллине ыйтма. Турă утă çуличчен çутарма хушнă. Лешĕ «утă çинче» тенĕ пек илтнĕ. Вара кашнинчех утă çинче çумăр çăвать.

45

Ĕлĕк-авал икĕ халăх пĕр-пĕринпе ялан çапăçса пурăннă. Пĕррехинче вара вăйлăраххисем теприсене веçтех касса тураса тăкнă. Вилнисен юнĕн-

чен вара тинĕссемпе юхан шывсем пулса кайнă. Вĕсен кӳлеписенчен çĕр пулса кайнă. Шăлĕсенчен сăртсем-тусем пулса кайнă. Çӳçĕсенчен вăрман шăтнă. Куçĕсенчен çăлтăрсем пулса кайнă.

46

Ĕлĕхне Ар-Сĕнтĕр тĕлĕнче тинĕс полнă. Тинĕс татса тохса кайнă, хохса кайнă. Хохса каят, тарăн вырăна йолат пысăк полă (çич çохрăм авăр выртнă). Тавай çак полă тапратнă ишсе каймашкăн. Çиччас хӳрипеле çапат: кимĕсене типпе кăларса вăркăтат. Тинĕс юхса кайнă, пĕтнĕ. Халь калаччĕ: Вăрăм кӳл питĕ тарăн.

## Путăк

47

Пирĕн пахча хыçĕнче пысăк çăл пур. Ĕлĕк çавăнта питĕ пысăк шурлăх пулнă. Унта кайăк хурсем çăмарта туса чĕпсем кăларнă. Мункун каç çак шурлăхри кӳлĕрен Аçтаха тухса кайнă тет. Вара хуран пек шăтăк пулса юлнă тет. Çав каç çĕрĕпех хĕрлĕ хăйăр юхнă тет. Çав шăтăк халь те пур. Шăтăкне чул пăрахсан шăмпăрт! туса анса каять.

## Пĕлĕт

*Чăваш хайлалăхĕнче Пĕлĕт Çӳлти тӳпепе Çут тĕнчен чи пысăк пайĕ пулни курăнать. Ана Уçлăхпа Шыв хушшинчи хавăсри (хаосри) пуçламăш никĕс теççĕ. Авалхи хайлаллă ăнлавра Пĕлĕт чĕрĕ сăнарлă, чунлă ӳкерĕннĕ. Вăл Çĕре пултарнă чухне аялах аннă, çынсем кӳрентерсен çӳле хăпарса кайнă, тархасласа ыйтнипе каллех çывăха килнĕ, этеме ырă кӳме тăрăшнă.*

*Пĕлĕт тытăмĕпе нумай хутлă. Унăн çӳлти сийĕсенче ырă хăватсемпе шульăшсем пурăнаççĕ, çавăнпа этем çӳлелле пăхса кĕлĕ тăвать, ӳкĕт калать.*

48

Пĕлĕт вăл Шывпа Сывлăш ачи. Çут тĕнчене курса çӳреме килнĕ...

49

Малтанах çĕр çинче пĕр пĕлĕт те полман. Пĕрре çынсам вутă топсан осă корма тытăннă та чĕртсе ярнă. Пăхаччĕ* те — çулăмран темле шорă япала тухса çӳлелле вĕçсе кайнине кураччĕ**. Вĕсенчен вара пĕлĕтсем полса кайнă тет.

50

Иван паттăр пĕр Аçтахана вĕлернĕ. Кайран унăн ӳтне вăл çунтарса янă. Çунакан Аçтахаран тухакан тĕтĕмрен пĕлĕтсем пулса кайнă.

---

* Пăхаççĕ.
** Кураççĕ.

## 51

Пĕлĕт аялта чухне пĕлĕт татăкĕ ӳкет тит. Ăна çынсем курнине те калаç. Эпир те курнăччĕ. Эпир пĕрре карăмăр çырмана, ача чухне-ха вăл, шу хĕрринче чуллă çĕрте пĕлĕт татăкĕ выртать, сӳтĕн пек кисренет.

## 52

Пĕлĕт тĕтĕмрен пулнă тит. Ĕлĕк-авал çĕр тума вăрмансем нумай çунтарнă, çумăр пĕлĕчĕ çав тĕтĕмрен пулнă тит.

## 53

Тата телейлĕ çын пĕлĕт тупат тет. Вăл пĕлĕт пит вăйлă çумăр çуса кайсан тупăнат тет. Вăл çумăр çунă чух çумăрпа пĕрле ӳкет тет. Вăл сӳтĕн евĕрлĕ çеп-çемçе те, анчах пит шурă пулат тет. Ăна тупсан вара кĕленче савăт çине ярса усрама кирлĕ тет, вăл кĕленче çинче çумăр пуласса сиссен хăпарса каят тет, уяр пуласса сиссен типсе, лапчăнса, пĕрĕнсе каят тет. Çав пĕлĕт тупнă çын аллисене çав пĕлĕтпе сĕркелесен вăл çынна вара ĕç патĕнче никам та ĕçлесе çитереймеç тет, вăл çын ĕçе пит хăварт тăвакан пулат тенĕ.

## 54

Этем йăхĕн малтанхи ĕмĕрĕнче пĕлĕт çĕртен нумай çӳлте пулман, çуртсем çинчен кармашсан тытмалла пулнă. Этемсем ун чухне пĕлĕт татăкĕсемпе кĕсен-сурансене эмеллесе тӳрлетнĕ. Пĕлĕт çапла аялта çакăнса тăни Турă этемсем çывăхнерех пулнине, вĕсене ытларах ырлăх пама пултарнине кăтартнă.

Анчах пĕрре пĕр тăрлавсăр хĕрарăм пĕчик ачи сăпкара вараласан ăна кипкепе шăлнă та кипкине типĕтме пĕлĕт çумне çакнă. Турă çавăншăн кăмăлсăр пулнă. Вăл пĕлĕте çӳлерех çĕкленме хушнă. Пĕлĕт Турă хушнине итлесе çӳлелле шавласа çĕкленсе кайнă.

Çавăнпа ĕнтĕ халĕ пĕлĕте çурт çинчен кармашса та, йывăç çине хăпарса та алăпа сĕртĕнме е çекĕлпе, сенĕкпе çаклатса илме май çук, пайтах çӳлте çав вăл.

## 55

Тахçан ĕлĕк-авалхи вăхăтсенче пĕлĕт çĕрпе пĕрлешсе тăнă тата тĕнчере çăра тĕттĕм тăнă.

Пураннă çав вăхăтсенче çĕр çинче пĕр этем арăмĕпе. Вĕсен кăкăр ачи пулнă, вăл ялан макăрнă, ай сарăмне вараланă, ашшĕпе амăшне пĕр канăç та паман.

Ашшĕ-амăшĕ аптрасах çитнĕ. Пĕринче этем тĕлĕк курнă. Вăл ача кипкисене йывăç сенĕк çине тирнĕ те пĕлĕте тĕкнĕ пулать. Пĕлĕт вара сирĕлнĕ те çӳле инçе-инçе хăпарса кайнă. Вара пĕлĕт хыçĕнчен вутлă çавра ишсе тухнă та тавралăха çутăпа ăшă сапаласа янă.

Этем ачине алăра тытнă пулать те, ачи савăнса та кулса вутлă çаврана тытас тесе туртăннă.

Этем вăрансан тĕлĕке арăмне каласа панă. Лешĕ чăнах çапла туса пăхас тенĕ.

Вара этем сенĕк çине ача кипкине çаклатнă та пĕлĕте питĕнчен тĕкнĕ.

Лешĕ уçăлса кайнă та таçта çӳле хăпарса тарнă. Ун хыççăн хĕвел тухнă та çĕре çутăпа ăшă тултарнă. Амăшĕн аллинчи ача самантрах макăрма чарăннă та йăл-йăл кулса икĕ аллипе те хĕвел патнелле туртăнма пуçланă.

## 56

Пĕлĕт тахçан ĕлĕк ку чухнехи пек питĕ çӳлте пулман тет, пӳрт-çурт, карта-хуралтă çийĕсене сĕртĕнсе иртсе çӳренĕ тет. Асар та писер, юлхав та тăрлавсăр хĕрарăм: «Сывлăмпа-çумăрпа çăвăнтăр, çилпе-хĕвелпе типшĕнтĕр», — тесе шухăшласа пĕчĕк ачин шăршлă, лăпăр-лапăр вараланчăк кипкисене тытнă та пӳрчĕ тăррине вăркăтса пăрахнă тет. Ирсĕр кипкисенчен йĕрĕнсе чикĕсĕр тарăхса кайнă пĕлĕт çиçĕм çиçтере-çиçтере, аслати авăттара-авăттара çӳлелле çĕкленме пуçланă тет. Пĕлĕт çапла виçĕ талăкчен çӳлелле хăпарнă тет. Маларăшне вара пĕлĕт çĕр кăкăрĕ патне ытла тачă, çывăх килме терт тытман тет, çӳлте-çӳлте шуса çӳреме пуçланă тет.

## 57

Ĕлĕк пĕлĕт вăрăм çын пуçне перĕннĕ. Хăш-пĕр çынсемшĕн пĕлĕт çӳлĕк пек пулнă. Çынсем час-часах хăйсен япалисене пĕлĕт çине хăпартса хунă. Кунпа çĕр пулман, ялан пĕр тĕслĕ çанталăк тăнă. Этемĕ сахал пулнă, çĕрĕ нумай сарăлса выртнă.

Арăмĕпе упăшки пурăннă. Çаксем пĕр-пĕрне питĕ юратса, килĕштерсе ĕçленĕ. Çанталăк кăшт çутăраххăн курăнма пуçласан кусем ĕçе кайнă, ывăнса çитсен ĕçрен таврăннă. Хăйсем яланах савăнăçлă та кăмăллă пулнă. Пурнăç мулĕ çитсе пынă.

Ĕçрен килсен арăмĕпе упăшки апат пĕçернĕ. Упăшки килĕ çине пăри ярса, хайăрласа, хуппинчен тĕшшине авăсса уйăрса авăртнă, кĕрпе тунă. Арăмĕ вут хутса янă та пăтă çине яма аш-пăш хатĕрленĕ. Кĕрпе хатĕр пулсан хурана ярса пăтă пĕçернĕ.

Пĕрре çак упăшкипе арăмĕн хырăмĕсем выçса кайнипе питех те хыпăнса ĕçлеме тытăннă. Упăшки хыпăнса пăри тĕшĕленĕ, арăмĕ пĕр мăнтăр чăххине тытнă та пусса вут çине вĕтме тăнă. Çуллă чăхха вут хыпса илнĕ те, ку ялкăшсах çунма тытăннă. Пушар пуласран хăраса хĕрарăмĕ вучахри ялкăшса çунакан вутта кĕреçепе ăсса: «Шуйттан илсе каймĕш», — тесе пĕлĕт çинелле вăркăнтарнă. Упăшки пĕлĕт лутра пирки пăри тӳме чăрмантарнăшăн тарăхса: «Çак шуйттан пĕлĕчĕн çӳле каясчĕ», — тесе кисиппе пĕлĕте хытă тĕкнĕ.

Çав самантра йăлкăшса çунакан вутпа пĕлĕт çӳлелле хăпарма тытăннă. Упăшки куна курнă та арăмне кăварланнă вут пуççине çӳлелле пеме хушнă. Арăмĕ вут пуççине илсе пенĕ. Юлашкинчен вучахри кăварне ăсса вут пуççи хыççăн çӳлелле ывăтнă.

Çакăнтан вара пĕлĕт çинче хĕвел, уйăх, çăлтăрсем пулса кайнă. Пĕлĕт çине пăх-ха, хĕвел яланах çунать; уйăх çунса кăварланнă вут пуççи пек; çăлтăрсем йăлкăшса шăранан кăмрăк пек çутатаççĕ.

## 58

Ĕлĕк пĕр ача тула кайнă. Нимĕнпе хырса пăрахма аптăранă та çăкăр сăмсипе хырса пĕлĕт хĕрри çине хунă. Çавăнтан кайран пĕлĕт çӳле хăпарса кайнă.

## 59

Ёлӗк пӗлӗт аялта полнӑ тет. Пӗр матка ачи котне ҫӑкӑр сӑмсипе шӑлнӑ тет те пӳрт тӑррине пӗлӗт хошшине хӗстерсе хонӑ тет, вара ҫавна тор тӳсеймесӗр пӗлӗте ҫӳле эхтарнӑ тет.

## 60

Пӗлӗт ёлӗк ҫӗртен инҫе мар пулнӑ. Пӗри авал аслӑк ҫине хӑпарнӑ та ача пӑхне ҫӑкӑрпа шӑлса хӗстерсе хунӑ, вара пӗлӗт вун ик сутка мӗкӗрсе хӑпарнӑ тет.

## 61

Пӗлӗт тахҫан ёлӗк-авал пӳрт ҫӳллӗшӗнчех пулнӑ тет. Пӗр хӗрарӑм ача ҫуратма пуҫланӑ тет. Хӑйӗн тасамарлӑхне ҫав пӗлӗт ҫине хунӑ тет. Пӗлӗт ҫавна чӑтаймасӑр хӑпарса кайнӑ тет.

## 62

Чӑваш хӗрарӑмӗсем ҫӑкӑр пӗҫернӗ те сивӗтме пӗлӗтсем ҫине хунӑ. Кайран ҫӑкӑра илме тесе ун ҫине таса мар пусма хунӑ. Пӗлӗтсем вара таса мара юратман, вӗсем тӳрех ҫӳлелле ухса кайнӑ.

## 63

Кӑвак пӗлӗт ёлӗк аялтах пулнӑ тет, пӳрт ҫӳллӗшӗнче кӑначчӗ тет, ҫатан ҫине тӑрсан алӑ ҫитетчӗ тет. Пӗрин ачи какка тунӑ тет те, ачи кутне шӑлма тупаймасӑр, ҫӑкӑр сӑмсипе хырса илнӗ тет. Унтан ҫӑкӑра ҫӗре пӑрахма ҫылӑх тесе пӗлӗт ӑшне чиксе хунӑ тет. Пӗлӗт вара, таса япала, вӑл ҫылӑха чӑтаймасӑр, тата темӗн ҫылӑхпа варалӗҫ тесе, ҫӳлелле ҫӗкленсе тарса кайнӑ тет. Ҫавӑнтан вара нихҫан та аяла анман тет.

## 64

Пӗлӗте ёлӗк хул ҫитнӗ, кайран, тыр вырнӑ чух, пӗр хӗрарӑм ача каяшне шӑрпӑкпа тасатса пӗлӗте чикнӗ. Пӗлӗт намӑсланса хӑпарса тарнӑ.

## 65

Пӗлӗт чӑн малтан ҫӗр ҫинчех пулнӑ тет. Пӗр старик ӑна каяшлӑ шалчапа тӗртнӗ. Вара пӗлӗт питӗ ҫилленсе кайнӑ. Вӑл тарӑхнипе мӗкӗрсе ҫӳлелле ухса кайнӑ.

## 66

Авал тӳпери пӗлӗтсем ҫӗр ҫийӗнчех, алӑ тытмаллах шуса ҫӳренӗ тет. Пӗлӗтсем нумайӑйӑн пулнӑ, пӗр-пӗрин хушшинче вӗсен пысӑках мар хушӑксем пулнӑ.

Пӗррехинче пӗр хӗрарӑм ачи сӑмсине шӑлсан тутӑрне пӗлӗт ҫине ҫакрӗ тет. Вара пӗлӗтсем урса мӗкӗрме тытӑнчӗҫ тет. Малтан икӗ пӗлӗчӗ вӗҫсе хӑпарса кайрӗҫ тет, ун хыҫҫӑн ыттисем те. Халӗ те пулин вӗсем ҫӗр ҫывӑхне анмаҫҫӗ тет. Вӗсем ҫынсем куриччен каҫхине тусем патне пыраҫҫӗ тет те ҫӗр ҫинелле пӑхса илеҫҫӗ тет тусем хыҫӗнчен.

## 67

Ĕлĕк пĕлĕт çĕртен йăмра çӳллĕш анчах пулнă. Вăл сынсем мĕн ĕçленине пăхса тăнă. Çав вăхăтра улăпсем пулнă, вĕсем пĕлĕтрен çӳллĕ пулнă. Пĕлĕт улăпсене çӳреме чăрмантарнă. Пĕр Улăпĕ вара капла çӳреме кансĕр тесе пĕлĕте çӳлелле тĕртсе хăпартса янă. Пĕлĕчĕ çав тери кулянна тет.

## 68

Ĕлĕк-авал çĕр çинче нимĕн те пулман, пĕр пĕлĕт анчах пулнă. Пĕлĕчĕ çĕр çумĕнчех пулнă. Кайран çĕр çине улăпсем килеççĕ тет. Пĕр улăпĕ сунартан килсен пĕлĕт çине канма выртнă тет те çывăрса кайнă тет. Юлташĕсем таврăнсан тăратаççĕ кăна, ку тăмасть. Кусем çилленсе каяççĕ те пĕлĕтне çӳле ухтарса яраççĕ тет.

## 69

Пĕлĕт тени тăхăр хутлă теççĕ. 1-мĕш хучĕ — уяр пĕлĕчĕ, 2-мĕш хучĕ — ăмăр пĕлĕчĕ, 3-мĕш хучĕ — пас пĕлĕчĕ, 4-мĕш хучĕ — тăм пĕлĕчĕ, 5-мĕш хучĕ — çил пĕлĕчĕ, 6-мĕш хучĕ — пăр пĕлĕчĕ, 7-мĕш хучĕ — çăмăр пĕлĕчĕ, 8-мĕш хучĕ — юр пĕлĕчĕ, 9-мĕш хучĕ — тăвăл пĕлĕчĕ тет.

Турă хăй кăшне кăтартас тенĕ вăхăтра çав пĕлĕчĕ кăвак пĕлĕт витĕр тухса пирĕн çĕр çине анать теççĕ.

## 70

Пĕлĕт çичĕ хутлă тет. Хĕвел çичĕ хут пĕлĕт витĕр пăхать тет. Кăвак пĕлĕт, çил пĕлĕчĕ, шур пĕлĕт, тăм пĕлĕчĕ, юр пĕлĕчĕ, çумăр пĕлĕчĕ, пăр пĕлĕчĕ. Пĕлĕт хапхи уçăлать тет те, турă мĕн ярас тенĕ, çав пĕлĕтне кăларать тет, çумăр çутарас тесессĕн — çумăр пĕлĕчĕ кăларать тет; юр пĕлĕчĕ кăларас тесессĕн — юр пĕлĕчĕ кăларать тет.

# Хĕвел

*Хĕвеле этем Турă вырăннех хакланă. Çĕр çинчи пĕтĕм пурнăç Хĕвелрен килнине ăнланнă. Ӑмалтанхи мифсенче ăна этем хăй пекех, Çĕр çинчех пулнă пек кăтартнă. Хĕвеле ялти сумлă ватăсем ирпе ирех, çамрăксем çывăрнă вăхăтра, Пĕлĕт çине тĕртсе хăпартаççĕ имĕш. Хĕвелĕн тата ашшĕ-амăшĕ те пур (Хĕвелĕн амăшĕ ывăлне мунча хутса кĕтсе тăрать, Хĕвеле тырă выракансем чарса тăнăшăн вĕсене Хĕвел амăшĕ чуллантарса лартать). Хĕвел хăлхаллă, ураллă, çунатлă. Хĕвелпе Уйăх малтан пĕрлех çӳренĕ пулать. Уйăхĕ çухалса юлнă та кайран Хĕвеле курăнма вăтаннă, çавăнпа пĕри кăнтăрла, тепри çĕрле çутатаççĕ.*

## 71

Хĕвеле Турă тунă тесе калаççĕ. Хĕвел этем пекех чĕрĕ чунлă пулнă. Çĕр çинче этем йăхĕ пулса кайни Хĕвелпе çыхăннă теççĕ. Çынсем Хĕвеле хăйсем майлă пуласса ĕненнĕ, анчах Хĕвел пĕтесрен питĕ шикленнĕ тет.

## 72

Çӗр çинче тискер, хаяр хӗл алхаснӑ. Мӗн чухлӗ терт, асап кӳмен вӑл çӗр питне. Никам та юратман хӗле, никам та ун тусӗ пулман. Ӑна сутӑнчӑк çил-тӑман çеç тӑрӑшса пулӑшнӑ. Хӗл Çӗр çийӗн пӗр çывӑрмасӑр çӳренӗ, ӑçта чӗрӗ япала палӑртнӑ, ӑна шӑнтса лартнӑ. Кам хӑйне хирӗç тӑма хӑйнӑ, ӑна тӗп тунӑ. Хӑйӗн киревсӗрлӗхӗшӗн вӗçӗ-хӗррисӗр савӑннӑ, хӑрушла ахӑрса кулнӑ хӗл. Мӗн вӑхӑт çапла иртӗхнӗ-ши вӑл? Анчах хӑватлӑ вӑй тупӑннӑ. Ӑна Хӗвел тенӗ. Çӗр çине Хӗвел килнӗ. Илемлӗ, вӑйлӑ, ӑслӑ кӑмӑлӗ те хӑйӗн пекех ырӑ пулнӑ. Вӑл йывӑр кӗрешӳре хӗле çӗнтерсе хӑваласа янӑ. Хӗвел хӗл шӑнтса лартнӑ кашни чӗрӗ япалана чӗртнӗ. Пӗтӗм çӗр питне пурнӑç панӑ. Çынсене Хӗвел юрату парнеленӗ, вӗсен ӑс-тӑнне вӑратнӑ. Çакӑн хыççӑн çынсем, Хӗвел ырӑ пулнӑран, Çӗр çине ырлӑх килчӗ теме пуçланӑ.

## 73

Тахçан тӗнчере хӗвел пӗрре мар, виççӗ пулнӑ тата вӗсем çӗр çывӑхӗнчех çӳренӗ. Çавӑнпа пур çӗрте те питӗ шӑрӑх тӑнӑ. Çынсем хӗл, юр, сивӗ мӗнне пӗлмен. Хӑйсем çӗр çинче çӳренӗ, ӑшӑ тӑхӑнасси шухӑшра та пулман: çӑматӑ йӑваламан, чӑлха çыхман, алсишсемпе калпаксем туман. Йӗритавра тӗлӗнмелле йывӑçсем ӳснӗ, вӗсем çынна пурӑнма, савӑнма, сывлӑхлӑ пулма мӗн кирлине йӑлтах парса тӑнӑ. Анчах та хӑш-пӗрисем ӑшӑ çӗрте пурӑнма лайӑххине хаклама пӗлмен. Вӗсем тек-текех: «Шӑрӑх, сывлама çук, — тесе калаçнӑ. — Капла пурӑнас килмест! Пӗр хӗвел анчах пултӑр, тепӗр хӗвелне вӗлерес пулать!» — тесе кӑшкӑрнӑ.

Шурӑ сухаллӑ ӑслӑ ватӑсем асӑрхаттарнӑ: пӗр хӗвелне те вӗлерме юрамасть, вӗсене вӗлерсен пысӑк инкек пулать тенӗ. Анчах лешсем итлемен. Чаплӑ сунарçа чӗнсе илнӗ те пӗр хӗвелне ухӑран персе вӗлерме хушнӑ. «Ваттисем хӗвеле вӗлерме хушмаççӗ!» — тенӗ сунарçӑ. «Эпир хушнине итлеместӗн пулсан сана хӑвна халех вӗлеретпӗр!» — кӑшкӑрса тӑкнӑ хӗвеле вӗлерес шутлӑ çынсем.

Вилӗмрен хӑранипе сунарçӑ уххине карӑнтарнӑ, вӑрах-вӑрах тӗллесе тӑнӑ та персе янӑ. Ухӑ йӗппи хӗвел çине шӑхӑрса вӗçсе кайнӑ, тӳпе çутине чӗреренех лектернӗ. Хӗвел сӳннӗ, анчах шӑрӑх чакман. «Тепӗрне те персе вӗлер!» — хушнӑ çынсем. Лешӗ вара тепӗр хӗвелне те персе лектернӗ. Юлнӑ хӗвелӗ çынсенчен хӑранӑ та инçе-инçе, ухӑ йӗппи çитейми çӗре тарса кайнӑ.

Çанталӑк сивӗтнине сиснӗ çынсем хӑраса ӳкнӗ. Шутсӑр сивӗ çитнӗ. Йывӑççемпе курӑксем шӑнса ларнӑ, ачасем шӑнса вилме пуçланӑ. Апатçимӗç çитми пулнӑ. Хирсемпе улӑхсене юр хӳсе кайнӑ. Шывсем пӑрпа витӗннӗ. Хӗл ларнӑ. Хӑраса ӳкнӗ çынсем шурӑ сухаллӑ ватӑсем патне чупса кайса канаш ыйтма пуçланӑ. Лешсем çапла каланӑ: «Эсир пире итлемерӗр, тӳрлетейми йӑнӑш туса хутӑр. Вилнӗ çӑлтӑрсене чӗртме çук. Чӗрӗ юлнӑ хӗвел тарса кайрӗ. Вӑл çынсене текех ӗненмест. Вӑл пире ӗнентӗр тесен мӗн те пулин тӑвас пулать. Вара тин таврӑнма пултарӗ».

— Эпир тем тума та хатӗр, хӗвел таврӑнтӑр кӑна, — тенӗ çынсем.

— Юрать, — тенӗ ӑсчахсем. — Пурин те виçшер хӗвел ӳкерме пуçлас пулать. Пур çӗрте те хӗвел ӳкерӗр: çӗр çине, çуртсем çине, хӳмесем çине, тумсем çине. Пирӗн хӗрарӑмсем пир-авӑр çине виçшер хӗвел ӳкерччӗр. Вара сывӑ юлнӑ хӗвел çынсем тӑна кӗнине, айӑпӗсене каçарма ыйтнине ӑнланса илӗ те пирӗн пата çывӑхарах таврӑнӗ...

## 74

Хĕвел вăл пысăк япала пулас, тĕнчене ăшăтса тăраканскер, ял пысăкăш пуль вăл теççĕ. Хĕвел ирхине мăкач (мулкач) çине утланса чупать тет, кăнтăрла иртсен кашкăр çине утланса чупать тет, çавăнпа каç часах пулать кăнтăрла иртсен теççĕ. Хăйсемех Хĕвел йăтса чупакан япала вăл мăкачĕ питĕ пысăк пуль вара апла теççĕ.

## 75

Пурăннă тет ĕлĕк-авал пĕр ялта питĕ хитре хĕр. Хăй хитрипе çиçнĕ анчах, ялкăшса çӳренĕ. Çынсем ăна хитрешĕн юратнă, анчах çак хĕр ĕçлеме юратман, калаçма та тӳрккес калаçнă, çавăншăн ăна çынсем юратман. Чĕри те унăн сивĕ пулнă. Вара çынсем ăна çапла каланă: «Хитри хитре эс, анчах чĕрӳ сивĕ сан». Вара ăна çынсем унăн чĕрине кăларса илсе кăвайт чиксе лартаççĕ. Вара çапла калаççĕ: «Хăвăн хитрӳпе çынсене яланах çутатса ăшăтса тăр!» — теççĕ. Вара çак хĕре Турă ĕмĕрлĕхех хăйĕн чури туса хурать. Ăна Хĕвел ят парать.

## 76

Хĕвеле чунлă япала теççĕ. Çӳрекен Хĕвеле вĕсем ывăлĕ тенĕ. Ашшĕпе амăшĕ Хĕвел аннă, Хĕвел тухнă çĕртех пурăнаççĕ. Ашшĕпе амăшĕ Хĕвел анса ларсан сĕтлĕ çăмах çитереççĕ. Хĕвел вара талăкра иккĕ çисех пурăнать тет. Çавăнпа чăвашсем ачисене çăкăр ыйтсан: «Пĕрмай апат тетĕр, Хĕвел те кунне иккĕ çисех пурăнать», — тесе вăрçнă.

## 77

Хĕвеле пайтах пысăк теççĕ, йĕтем пысăкăш пуль теççĕ. Вăл çӳлтерен кăна пĕчĕккĕ курăнать тет. Хĕвел вĕресе тăнă пек вĕресе-йăшăлтатса «кулса» тăрать тет, ун çывăхне ниепле те пымалла мар тет, пĕçерсе татать тет.

Çаплах та тапхăр-тапхăр Хĕвеле Лăпăр* пырса çиет тет, хăш-хăш чух темĕскер Хĕвел çутине пырса пĕтерет те, пĕтĕм тĕнче «тĕттĕм çанталăк» пулса тăрать, çавна пирĕн чăвашăн ăрăмçă карчăксем: «Лăпăрсем пырса çиеççĕ тет», — теççĕ. Вăл тĕттĕм пулса тăрать-тăрать те унтан каллех çуталать, Лăпăр ăна çисех яраймасть тет, мĕн те пулин тунипе Хĕвел патĕнчен пăрахса каять тет.

Хĕвел тĕттĕмленес пулсассăн чăвашсем, юплĕ пилеш сенĕк тупса, çав пилеш сенĕке чĕрсе ывăтма хушаççĕ, вара Лăпăр Хĕвеле çиме чарăнать тет.

Унтан тата çуркуннепе-мĕнпе Хĕвел пĕлĕт айне кĕрсен урамри ачапăча: «Пăх, Хĕвел, пăх, Хĕвел, мункун çитсен хĕрлĕ çăмарта парăп», — тесе юрланă евĕрлĕ туса кăшкăраççĕ. Вара Хĕвел пăхать тет.

## 78

Хĕвел пысăк, анчах çӳлтен пĕчĕккĕ курăнать тет. Вăл вĕресе тăрать, çав тери вĕри тет. Вăл çĕр çинче пурăнать, çĕр çинчен хăпарать, çĕр çине анать тет. Вăл хăй тĕллĕн хăпараймасть тет. Ăна хăпартма Турă ялти

---

* Вупăр.

хисеплě çынсене уйăрнă тет. Вěсем ăна аран хăпартнă. Вăл хăйне хăпартнине пěчěк ачасем курасран питě шикленнě. Ачасем курсан кунěпе пăхаймасăр хурланса çÿренě. Çавăнпа та ачасене Хěвел тухиччен вăратман.

## 79

Пирěн ялта Çтаппан ятлă çын пурччě тет, ялти çынсем ăна хисеплесе катаранах çěлěкěсене хывса пуç тайнă тет. Хисеплеме сăлтавě те пулнă. Кашни ирех çак Çтаппан пысăк лум йăтса хěвел тухăçнелле чупнă. Ачасем унтан: «Ăçта каян, Çтаппан пичче?» — тесе ыйтсан вăл нимěн те каламастчě тет е: «Кайран пěлěн-ха!» — тесе кăна хăваратчě тет. Кайран вара ялти çынсене пухса хăй ăçта пулни çинчен каласа паратчě тет.

Ăна Турă Хěвеле кăвак тÿпене хăпартма янă имěш. Пур ялтан та хисеплě çынсене Турă Хěвеле хăпартма пулăшма янă тет. Хěвелне хăпартма çав тери йывăр пулнă тет, темěн чухлě вăйпитти арçынсем аран-аран çěклесе хăпартса яма пултарнă тет. Ун чух темěн чухлě тимěр лум хуçăла-хуçăла пěтнě тет. Уйрăмах Хěвеле çěр çумěнчен уйăрса илме йывăр пулнă тет.

Хěвелě хăпартнă чух çав тери хурлăхлă пулнă тет. Уй-хирсем, вăрмансем, ялсем çине пăхма вăтаннă тет. Уйрăмах вăл пěчěк ачасемпе çамрăксем хăйне питě тертленсе хăпартнине курасран хăранă тет. Хăйне хăпартнине çамрăксенчен кам та пулин курсан вăл кунěпе пěлěтре хурланса çÿренě тет тавралăха илемлě куçěсемпе пăхаймасăр. Питě тěксěм, сивě пулнă вара çав кунсенче, ÿсен-тăрансем те, выльăх-чěрлěхсем те, çынсем те кунěпех сарă Хěвел ăшшисěр аптăранă. Çакна пěле тăра çынсем хăйсен ачисемпе çамрăксене Хěвел пěлěтре хавaслă ярăнма пуçламасăр урама тухма кăна мар, кантăкран пăхма та хушман. Çамрăксем хăйне хăпартнă чух курмасан Хěвел çав кун тÿпере питě хавaслă çÿренě, вăрмансем, уй-хирсем, ялсем, хуласем çине ним вăтанмасăр илемлěн пăхнă, пурне те хăйěн ăшă пайăркисемпе ачашлама тăрăшнă. Çав кунсенче пурте калама çук савăнса çÿренě тет. Ун пек чух Хěвелěн çěр çине каялла анасах та килмен тет, анчах хырăмě выçнипе е ывăннипе çеç аннă тет. Савăнăçлă чух пěлěтре чылайрах пуласшăн пулнă, куляннă чух вара вăл хăй хăвăртрах анма тăрăшнă.

Анчах Хěвел хăй тěллěн анма пултарайман. Анма пулăшмасан вăл çěр çине ÿксе пěчěк-пěчěк пайсем çине пайланса кайма пултарнă. Хěвеле хăпартма каякан çынсем ăна антарма та кайнă. Анчах анасса çав тери хытă аннă вăл, ниепле те тытса чарма май пулман. Чи малтан çынсем Хěвеле пěр çěре тăрса пуçěсем çине антарнă, унтан аллисемпе тытса çěр çине антарса хунă.

Çěрле Хěвел çăвăнса тасалнă. Тепěр кунне ирхине каллех хăпартмалла пулнă. Хăпартнă чух çынсен ăна аллисемпе тытма юраман, мěншěн тесен апла Хěвеле хуратма, варалама пултарнă. Лумсене те таса пирпе чěркенě. Таса пирпе чěркесен вара Хěвел вараланман.

## 80

Ěлěк пěр çын анине вырса пěтерсе пырать тет. Хěвел анса килет. Çав выракан çын: «Хěвел, ан ан, эпě ана пěтермесěр ан ан», — тесе калать. Хěвел чарăнса тăрать. Хай çын анине вырса пěтерет, Хěвел те анать, çынни те çавăнтах ÿксе вилет. Хěвел ансан анана вырса пěтермеççě, пěрре касса илмелле пулсан та тепěр ирччен хăвараççě.

## 81

Ёлĕк пĕр çĕрте виçĕ тăван арçын пурăннă. Вĕсен арăмĕсем тырă вырас ĕçре пулнă, кунсерен виççĕшĕ пĕр ана тырă вырса пĕтернĕ. Упăшкисем урăх çĕрте ĕçленĕ.

Пĕрре çак арăмсем канма выртнă та пит вăрах çывăрнă. Хĕвел вĕсем ытлашши çывăрнине курса вăратасшăн хытăран хытă пĕçертнĕ. Анчах арăмсене Хĕвел систерни те пулăшман, вĕсем Хĕвеле вăрçса-ятлаçса сулхăналла куçа-куçа выртнă та каллех çывăрнă, ĕç çинчен мансах кайнă.

Ыйхăран вăрансан вĕсем васкаса анине малалла вырма тытăннă, анчах ана Хĕвел аниччен пĕтес çуккине курсах тăнă. Анине вырса пĕтермесĕр киле таврăнма хăранă вĕсем, упăшкисем мĕншĕн пĕтерменнине пĕлсе хытă ятласран шикленнĕ.

Хĕвел пĕлĕт чиккине, хăйĕн киле патне, çывхарнă. Унăн амăшĕ вăл киле таврăннă çĕре кашни кун мунча хутса хатĕрленĕ, ывăлне кĕтсе тăнă. Хĕвелĕ ялан хăй вăхăтĕнче, кая та юлмасăр, мала та чупмасăр, киле лăп амăшĕ мунча хутса хатĕрленĕ вăхăтра таврăннă, ăна нихăçан та никам та сăмахпа е урăх ĕçпе чарса тытса тăман. Анчах çав кунне нумай çывăрнă арăмсем Хĕвеле килне хăй вăхăтĕнче таврăнтарасшăн пулман. Вĕсем виççĕн харăс: «Хĕвел час анмин юрĕччĕ! Хĕвел час анмин юрĕччĕ!» — тесе тилмĕрнĕ. Хĕвел виç арăмăн сăмаххине илтсе вĕсене шелленĕ те вĕсем анана вырса пĕтеричченех çутатса тăнă.

Анчах çапла чарăнса тăнипе вăл амăшĕ хатĕрленĕ мунчана кĕме ĕлкĕреймен. Амăшĕ ăна пит кĕтнĕ, мĕн пулчĕ-ши тесе хыт пăшăрханнă. Ывăлĕ киле таврăннине курсан вăл мĕншĕн вăхăтра таврăнманни çинчен ыйтнă. Хĕвел виç арăм çинчен йăлт каласа панă. Хĕвел амăшĕ çилленнĕ те: «Вăл арăмсем чул пулса тăччăр эппин!» — тесе хунă. Хайхи арăмсем çав вăхăтрах ана çинче мĕнле тăнă, çав хальлĕнех чул пулнă. Вĕсем халĕ те пулин тăраççĕ тет.

Çавăнпа чăвашсем: «Хĕвеле хирĕç нимĕнле сăмах та калама юрамасть, Хĕвел эпир мĕн тунине пурне те курать, мĕн каланине пурне те илтет, унран нимĕн те пытарма май çук», — теççĕ. Çавăнпах та тупа тунă чухне яланах Хĕвеле асăнаççĕ.

## 82

Мăнкун кун Хĕвел тохать тет, çеçкеллĕ тет, ик айккинчен çеçкеллĕ кăваккăн-симĕссĕн корăнать тет. Ирех ой тӳпине тохса пăхмалла тет ăна корас тесен. Виççĕ корас поть* тет виличчен çавăн пек Хĕвеле. Ку япала чăнах тет. Пире çăва çинче виле патне килнĕ хĕрарăм каласа пачĕ. Шоркасси ялĕ патĕнчен килнĕ хĕрарăм вăл. Хамăн хĕрĕм те чăн-чăнах тесе каларĕ тет. Хĕрĕм каламан полсан хам та ĕненес çокчĕ тет.

## 83

Нурăс уйăхĕнче çĕнĕ çын шыва кайнă тет. Пит сивĕ пулнă тет те çĕнĕ çыннăн картлă кĕвенти хулпуççи çумне шăнса ларнă тет. Кĕвенте шăнса ларнинчен Хĕвел чăтаймасăр кулнă янă тет. Çавăнтан вара нурăс уйăхĕн-

* Курас пулать.

че кăнтăрла ăшăтакан пулнă тет. Нурăс уйăхĕ калать тет: «Эпĕ ирлĕ-каçлă икĕ пиччерен ирттеретĕп те, анчах кăнтăрла çĕнĕ çыннăн картлă кĕвенти шăннине астусан чăтаймасăр кулса яратăп», – тесе калать тет.

## 84

Малтан Уйăх та Хĕвел пекех пысăк та çутă пулнă. Вĕсем иккĕшĕ те пĕрле çутатнă. Уйăрма пулман вĕсене. Анчах Уйăх пĕр тĕттĕм каç çухалса кайнă та нумайччен аташса çӳренĕ. Çапла çӳре-çӳре халтан кайнă та Уйăх, çути вăйĕ пĕтнĕ унăн. Хăй çапла чипер маррипе вăтанса Уйăх халь Хĕвел канма выртсан тин тӳпене тухать тет те пĕчченех çӳрет тет кулянса.

## 85

Ĕлĕк-авал Хĕвелпе Уйăх пĕрле пурăннă тет. Вĕсем пĕри ăçта, тепри те çавăнта çӳренĕ. Тĕнчене вĕсем çутăпа ăшă парса тăнă. Анчах пĕр çăткăн Вупăр пулнă. Вăл çутăпа ăшша курайман, ăшша пула чĕр чунсем савăннине кĕвĕçнĕ, Хĕвелпе Уйăха тарăхтарнă. «Хăть çав Хĕвелпе Уйăха пĕр-пĕринчен уйăрасчĕ», – тесе шутланă вăл.

Вара хăй пеккисене пухса пĕр ирхине Уйăха хупăрласа илет те Хĕвел анмасăр та ирĕке ямасть. Вăл Уйăха веçех асаплантарса, тарăхтарса пĕтернĕ пулнă. Уйăх вара хăй те Хĕвеле курăнма вăтаннă, Хĕвел тухсан анса ларнă, Хĕвел ансан тӳпене тухнă. Çавăнтан вара Хĕвелпе Уйăх яланах уйрăм çӳреççĕ тет.

## 86

Ĕлĕк-авал Хĕвелпе Уйăх аппăшĕпе йăмăкĕ пулнă тет. Пĕр-пĕрне вĕсем килĕштерсе пурăннă тет. Анчах пĕррехинче Хĕвелпе Уйăх çине Вупăр тапăннă тет. Вăл Уйăхăн çур пайне хыпса çисе ярать. Çавăнтанпа Уйăх çурла пек пулса юлать. Хăйĕн аппăшĕнчен вăтаннипе вăл çӳлерех каять тет. Çавăнпа Хĕвелпе Уйăх пĕр-пĕрне тĕл пулмаççĕ. Хĕвел кăнтăрла, Уйăх каçпа тухать.

## 87

Хĕвелпе Ойăх пĕртăвансем полнă тет. Пиччĕшĕ Хĕвел полнă тет, Ойăхĕ – ун йăмăкĕ. Анчах вĕсем тослă порнишĕн кораймасăр вĕсене пĕр тохатмăш ойăрса янă тет. Вĕсем пĕр йăлтăркка çолпа çӳренĕ полнă тет. Çав тохатмăш вара вĕсем çӳрекен çола аркатнă тет те, халĕ пĕр-пĕрне топаймӑççĕ тет. Çолне аркатнинчен çăлтăрсем пола-пола кайнă. Ойăх пиччĕшне çĕрле шырать тет те кăнтăрла выртса канать тет, Хĕвелĕ кăнтăрла шырать тет те каçпа канать тет. Вĕсем пĕр-пĕрне топсан нихçан та каç полмалла мар тет.

## 88

Чăвашсем хĕвел, уйăх, çăлтăрсем мĕне пĕлтернине сапла каласçĕ. Ӳкекен çăлтăр сын вилнине пĕлтерет тесçĕ. Хĕвел пăхнă чух çумăр çусан вилнĕ сынсем ташлассĕ тесçĕ. Асамат кĕперри шыв илет тесçĕ. Хур кайăк çулĕ çинчен: хăшĕ унта кайăксем ăшă çĕре каяççĕ, хăшĕ вăл авал еврейсене çул кăтартса пынă теççĕ. Çавра çил ăшĕнче шуйттан пур, унта тимĕр татăк пăрахсан çавра çил пĕтет, тимĕр юн пек хĕп-хĕрлĕ пулать теççĕ.

## Уйӑх

*Уйӑх, Пӗлӗт пекех, аялта, ҫын ҫитмелли ҫӗртех пулнӑ, ӑна ҫӳлелле е Улӑп ҫӗклентерсе янӑ, е хӗрарӑм тасамарлӑхне тӳсеймесӗр Пӗлӗт ҫине вӗҫсе хӑпарса кайнӑ. Хӗвел е Уйӑх тӗттӗмленнине чӑвашсем Вупӑр ҫинипе ӑнлантараҫҫӗ. Уйӑх тӗттӗмленме пуҫланине курсан ҫӳлелле вӗри кӗл сапаҫҫӗ, пилеш хуллипе Пӗлӗтелле чышса Вупӑра хӑратаҫҫӗ. Уйӑх ҫинче палӑракан мӗлкесене хулпуҫҫи ҫинче кӗвентепе витресем йӑтса тӑракан хӗр кӗлетки пек сӑнлаҫҫӗ. Ытти чылай халӑхсен мифӗсенче те Уйӑх ҫинчи хӗр сӑнарӗ пур. Бразили мифӗнче Уйӑхӗ хӑй Пӗлӗт ҫине хӑпарса ҫӗрле ҫӗре ҫутатса тӑни ҫинчен каланӑ. Уйӑх хӗре хӑй ҫине хӑпартни ҫинчен каланин тӗрлӗ сюжечӗсем этем тӗнчекурӑмӗ улшӑннӑран пулса пынӑ.*

### 89

Хӗвелпе Уйӑха Турӑ тунӑ. Хӗвелпе Уйӑх нихӑҫан уйрӑлми пӗрле ҫӳренӗ. Анчах та пӗррехинче ҫапла кӑнтӑрла уҫӑлса ҫӳренӗ чухне Уйӑхӗ ҫӗтсе юлать. Уйӑха Шуйттан чурисем хӑйсем патне кӗлете хупса лартаҫҫӗ. Уйӑха вӗсем сӗм ҫӗрле ҫеҫ уҫӑлма кӑлараҫҫӗ, уйӑхра ӑна пӗрре тӑрантараҫҫӗ. Ҫавӑнпа Уйӑх каҫхине ҫеҫ тухать, уйӑхра пӗрре тулли уйӑх пулать.

### 90

Ӗлӗк Уйӑх аслӑк тӑрринче кӑна пулнӑ, аслӑк ҫинче каҫхине ун ҫутипе хӗрсем тӗрӗ тунӑ. Пӗр хӗрарӑм таса марӗ кайнӑ чухне, ҫынсем ҫук чухне, вӑтаннипе Уйӑх ҫине таса маррине сӗрнӗ. Уйӑх ҫичӗ кун, ҫичӗ каҫ шавласа хӑпарнӑ.

### 91

Ӗлӗк-авал Уйӑх аялта пулнӑ тет. Ку улӑпсем чухнех пулнӑ. Пӗрре Улӑп сунартан килнӗ чухне Уйӑх ҫумне пырса ҫапӑнать те ҫамкине ыраттарать. Вара ҫилленнипе Уйӑха тӳпенеллех кустарса ярать. Ҫавӑн хыҫҫӑн Уйӑх ҫӳлтех тӑрса юлать.

### 92

Авал Пӗлӗтпе Уйӑх пуҫ тӑрнех перӗннӗ тет. Улӑп, Пӗлӗте ҫӳлӗк вырӑнне хурса, алси-ҫӗлӗкне пӗлӗт ҫине хунӑ тет. Пӗрре асӑрхамасӑр ҫамкине Уйӑха перӗнтерсе ыраттарчӗ тет. Улӑп тарӑхнипе Уйӑха пӗррех персе ячӗ тет. Яка мар пӗлӗт тӑрӑх Уйӑх сиккелесе хӑйпӑнса пӗтрӗ тет. «Эх, капла Уйӑха пӗтертӗм вӗт. Каҫхине мӗнле ҫутӑпа ҫӳрӗп-ха?» — тесе каялла Уйӑх катӑкӗсене пуҫтарса ҫыпӑҫтарчӗ тет те ӳлӗмрен перӗнсе ан чӑрмантартӑр тесе Уйӑха Пӗлӗт ҫумне ҫакрӗ тет. Ҫавӑнпа Уйӑх пӗрре пӗтет, тепре ҫӗнӗрен пуҫтарӑнать.

### 93

Ӗлӗк Ҫӗрӗн пӗр енче ҫӗрле нимӗн ҫути те пулман. Пӗр уйӑх-ҫӑлтӑр та пулман. Акӑ виҫҫӗн-тӑваттӑн шухӑшлаҫҫӗ: «Атьӑр-ха ҫут тӗнчене ҫӳресе курса килер-ха пӗр», — теҫҫӗ. Нумай-и, сахал-и каяҫҫӗ те пӗр патшалӑха, хӗвел ансанах пӗлӗт ҫинче ҫӑлтӑр-уйӑх тухакан ҫӗре, ҫитеҫҫӗ.

Тӑвата ҫын ӑнтан каяҫҫӗ: «Мӗскерле кунта каҫӗне* темӗскер ҫути пур», —

* Каҫхине.

теççĕ. Акă пĕр çын урапапа иртсе пынă. Ку çынсем кунтан ыйтаççĕ: «Мĕскерле çутă ку?» — тесе. Урапа çинче пыракан каланă: «Вăл — уйăх, виç çĕр тенке илнĕ ăна, çÿлĕ пĕлĕт тăррине çакса хунă», — тенĕ. Ку çын çапла калат та каят тет. Кăсенчен* пĕри: «Кун пек çутта эпир те тăваппăр, пирĕн килте çавăн пек çÿлĕ пĕлĕт пур», — тенĕ. Тепри калат: «Апла çутнипе мĕн çути пулĕ вара», — тенĕ. Тепри каланă: «Айтăр лашапа урапа илер те ку уйăха исе каяр, кусем тепĕр уйăх илĕç», — тенĕ. Виççĕмĕш çынни каланă: «Эпĕ улăхма пит лайăх улăхатăп, ăна лайăх салтса антарăп», — тенĕ. Тăваттăмĕш чупса кайса урапапа лаша исе килнĕ. Вара хай çынни улăхса каят та салтса аялалла антарат тет. Антарсанах кăсем уйăха урапа çине хунă. Никам та ан куртăр тесе явлăкпа витнĕ. Хайхисем хăйсен ялне исе пыраççĕ те пысăк çÿлĕ вăрман çине çакса хураççĕ. Каçхине ватти те, ачи те савăнат тет. Пĕтĕм ялне, хирпе çаранне веç çутатса тăнă. Тăватă çын ку уйăха пит çутă тытнă. Çавăнпа кашни эрнере пĕрер тенкĕ илсе тăнă. Çапла вара ку çынсем чысти ватăлаççĕ. Кăсенчен пĕри чирлет те вилес умĕн калат: «Вилсен ман хам тулĕм** уйăха хампа пĕрле тупăка хурăр», — тенĕ. Вилсен пĕри улăхат та, чĕрĕк уйăхне касса антарса ку вилнĕ çыннăн тупăкĕ çине çĕр айне хураççĕ. Уйăхăн çути пĕчĕкленнĕ, çапах нумаях иксĕлмен, паллах пулман. Пурăнсан-пурăнсан тепри те вилет тет. Кăна та çапла хăй пайне тупăка хунă. Уйăхăн çути тата пĕчĕкленнĕ. Тепри вилет те, ку та хăйпе пĕрле исе кĕрет. Тăваттăмĕшĕ те вилет, ăна та хăй пайне хураççĕ. Вара уйăх пĕртте юлмас тет. Ку ялта каç каллех тĕттĕм пулать, хунартан пуçне пĕртте тухма та пулман. Тухсанах пуçпа пуç перĕннĕ.

Вилнĕ çынсем уйăх çутипе пурте чĕрĕлнĕ тет. Уйăха каллех ĕлĕкхи çĕре çакса хунă. Пурте савăннă, ташланă, юрланă, хупаха кайса эрех ĕçнĕ, савăннипе пурте штурма*** пулнă. Кайран, ташласан-юрласан, çапăçса та илнĕ. Кăсем иртĕннĕрен Пĕлĕт çинчен Пирĕшти вĕçсе анат та вилнĕ çынсене çĕнĕрен вырттарат. Уйăха илет те пĕлĕт çине çÿлех çакса хурат. Вăл вара пĕтĕм тĕнчене çутатса тăнă. Çавăнтан вара уйăх пулнă.

## 94

Пĕр карчăкпа ватă пурăннă. Ваттин çатма икерчи çиес килнĕ. Вара карчăка икерчĕ пĕçерме хушнă. Карчăк часах пĕçерсе панă. Унтан старик каланă:

— Çав Уйăха та икерчĕ пар-ха, — тенĕ.

Карчăк хытă пулнă. Икерчĕне илсе тухнă та сарай хĕрне Уйăх курми хуранçи тунă. Хăй хуман. Çавна Уйăх курнă та питĕ пăшăрханнă. Вара тата инçе вĕçсе кайнă.

## 95

Пирĕн ялти чăвашсем каçхине уйăх курăнми пулсан Уйăха вăпăр çиет теççĕ. Вăпăрĕ уйăха çиме тĕпне касман çăка йывăççине сÿсе илнĕ йывăç тăрăх улăхать теççĕ. Вара ун пек чухне Уйăха Вăпăр ан çитĕр тесе Уйăха хирĕç вутлă кĕлпе авăсаççĕ. Е тата пилеш йывăççинчен тунă сенĕк юпписене уйăрса Уйăх еннелле ывăтсан Вăпăрĕ Уйăх çинчен çĕре персе ÿкет теççĕ.

---

* Кусенчен.
** Пайăм.
*** Ташланă-юрланă.

## 96

Уйăх тĕттĕмленнĕ чухне чăвашсем уйăха Вупăр çиет теççĕ. Ачасем ват çынсенчен уйăх çинче мĕн мĕлки курăнать тесен, ват çынсем çапла каласа параççĕ: «Унта та çынсем пурăнаççĕ. Ав пӳрт трупинчен тĕтĕм тухать, пĕр хĕрарăмĕ шыв патне картлă кĕвентепе каять», — теççĕ.

## 97

Пĕр вăпăр карчăк пулнă тет, унăн кĕрӳшĕпе хĕрĕ пулнă тет. Уйăх тулса çитсессĕн çав карчăк кĕрӳшĕпе хĕрне чĕннĕ тет те пăртак калаçса ларчĕç тет. Карчăкки кĕрӳшне:

— Эсĕ Уйăха пуçланă чух Турра ан асăн, — тесе каларĕ тет.

Вара кăмака çамки çине вир акрĕç тет те, виççĕн виç пучушши çине утланса Уйăх патне хăпарса карĕç тет. Карчăккипе хĕрĕ иккĕшĕ те Турра асăнмасăрах Уйăха пуçласа çирĕç тет.

Кĕрӳшĕ:

— Турă, çырлах, Турă, пулăш, — тесе çиме пуçларĕ тет.

Хунямăшĕ кĕрӳшне:

— Апла ан кала, Турă илтет, — тесе каларĕ тет.

Турă илтсе пычĕ тет те карчăккипе хĕрне шалча çине, кĕрӳшне улăм ури çине лартрĕ тет.

## Çăлтăрсем

*Этем çăлтăрсене те Турă тунă тесе ĕненнĕ. Вĕсене Турă вырăнне хурса хисеплени палăрмасть, анчах кĕлĕсенче «Хĕвелшĕн, çăлтăршăн...» тенисем çăлтăрсене Хĕвел пекех хисепленине кăтартаççĕ. Кашни çыннăн хăйĕн Çăлтăрĕ пур тесе ĕненнĕ. Ача çуралать — тӳпере çĕнĕ Çăлтăр пулать, çын вилет — унăн Çăлтăрĕ сĕре ӳксе сӳнет. Чăваш Çăлтăр ӳкнине курсан хăйне вилĕмрен çăлса хăварас шутпа: «Манăн Çăлтăр тӳпере!» — тесе лăплантарать. Çăлтăр ӳкнĕ чух хӳреллĕ курăнать, хӳреллĕ Çăлтăр, чăваш шучĕпе, ырра мар. Чăвашсем çăлтăрсене тĕрлĕ ят хунă: Ала çăлтăр, Кĕвенте çăлтăр, Çут çăлтăр, Çурăмпуç (Шурăмпуç) çăлтăр. Ала çăлтăр пулса кайни çинчен калакан халап этем сунар ĕçĕпе пурăннă тапхăрпа çыхăннă: икĕ сунарçă сивĕпе шăнса вилнĕ те, вĕсенчен çăлтăр ушкăнĕ пулса тăнă теççĕ. Пĕр пек çутă çичĕ çăлтăра алтăр кӳлепи евĕр курăннăран Алтăр çăлтăр тенĕ. «Алтăр çăлтăр — çич çăлтăр, ăна каласан сăвап пулать» тесе çичĕ хут каласа вĕсен асамлă вăйне сума сунă. Çурăмпуç çăлтăрне пĕр-икĕ каç курмасăр тăрсан чăваш ваттисем: «Самана улшăнать пулĕ, Çурăмпуç çăлтăрĕ çухалчĕ», — тенĕ. Çăлтăрсемпе çыхăннă халап нумай.*

## 98

...Çăлтăрсене пурне те Çӳлти Турă чĕрĕ туса янă. Çӳлти Турă çăлтăр тĕнчипе хуçаланать, çĕр çинчи ĕçсемпе вăл аппаланмасть.

Çĕр çине ӳкекен хӳреллĕ çăлтăрсене чăваш хисепе хумасть, вĕсене вăл чӳк тумасть. Хĕвел таври пĕчĕк çăлтăрсем çӳлти çăлтăр тĕнчишĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ мар, çавăнпа вĕсене шута хуман.

Хӳреллĕ çăлтăрсене Турă çĕр çинчи çынсем мĕнле пурăннине пăхма

ярать. Тĕрлĕ çылăхсемшĕн çынсене айăплас тесен вăрăм хӳреллĕ çăлтăр ярать. Вăл вара халăхшăн мĕнле те пулин инкек, пушар, тип шăрăх, чир-чĕр, вăрçă-харçă пуласса систерне.

### 99

Тĕтрелле çăлтăрсем телейсĕр те чухăн çынсен тĕлне, çутă çăлтăрсем телейлĕ те пуян пулас çынсемшĕн çутăлаççĕ. Ялтăр çутă çăлтăрсем патшасемпе, аслă та чаплă çынсемпе пĕрле çуралаççĕ. Çăлтăр ӳкнĕ чухне хăй сутипе мĕнле çын — чухăн, пуян, чаплă çын — пурнăçĕ татăлнине кăтартать.

### 100

Çăлтăрсене Турă тунă пуль тесе шутлатăп эпĕ. Пĕлĕт каçпа тĕттĕм пулнă, уйăх кăна пĕччен çакăнса тăнă. Турă вут-кăварне сапаласа пĕтернĕ пĕлĕт çине. Çапла çăлтăрсем пулнă.

### 101

Пĕлĕт çинче темĕн чухлĕ çăлтăр, кирек камăн та пĕлĕт çинче пĕрер çăлтăр пур тет. Вăл çăлтăр кирек камăн этем çуралсанах пĕлĕт çине тухса ларать тет те этем виличченех пĕлĕт çинчен персе анмасть тет. Этем вилес пулсассăн ун çăлтăрĕ пĕлĕт çинчен персе анать тет. Çăлтăр аннине курсан чăвашсем: «Манăн çăлтăр çӳлте!» — тесе кăшкăраççĕ.

Çăлтăр та пайтах пысăк пулать тет. Пĕлĕт çинчен ансассăн вăл «леш тĕнчере» каллех хăйĕн çыннипе пĕрле пĕлĕт çинче пек курăнать тет. Таса çыннăн çăлтăрĕ çутă пулать тет, çылăхлийĕн тĕттĕмрех пулать тет.

Унтан тата пĕлĕт çинчен персе анман паллă çăлтăрсем пур: Патша çăлтăр, Çич çăлтăр, Кĕвенте çăлтăр, Шурăмпуç çăлтăр, унтан тата Кайăк хур çулĕ текенни. Вĕсене пурне те чăвашсем лайăх пĕлсе тăрса, вĕсенчен чухласа çĕр мĕн вăхăт пулнине, тул хăçан çутăлассине пĕлеççĕ.

### 102

Çăлтăр пĕлĕт çинче пит нумай, тĕнчере мĕн чухлĕ çын, çавăн чухлĕ çăлтăр, кашни çыннăн хăйĕн çăлтăрĕ пур. Анчах çăлтăрсем пурте пĕр пек мар, хăшĕ çутă, пысăк, хăшĕ пĕчĕккĕ, тĕттĕмрех. Çĕр çинче çын вилсен çӳлтен пĕр çăлтăр персе анать тет, çĕр çинче çын çуралсан пĕлĕт çинче те çăлтăр çуралать тет. Çăлтăр уйăх çумне пырсан пăхсах тăр вара: тĕнчере е ялта çын вилетех.

### 103

Кашни çыннăн пĕлĕт çинче хăйĕн пĕр çăлтăр пулать тет, çуралнă чухне тухать тет те вилнĕ чухне пĕлĕт çинчен ӳкет тет.

### 104

Кашни этемпе пĕрле çăлтăр çуралать тет. Пурăнан ĕмĕрте çылăха кĕрекенĕн çăлтăрĕ тĕттĕмленсе тĕксĕмленет тет. Таса çыннăн ĕмĕрĕпех çапçутă тăрать тет. Çын вилсен çылăхсăр çынна çăлтăрĕ рая каймалли çула çутатать тет.

## 105

Кашни çыннăн хăйĕн çăлтăрĕ пор тит. Çăлтăр ӳксен такам çынни вилчĕ ĕнтĕ теççĕ. Çăлтăрсем тăрăх çынсам çĕтсе кайсан тĕрĕс çул тупаççĕ.

## 106

Çăлтăр мĕн пысăккăш? Çăлтăр пирĕн пысăк ала пысăккăш вăл тетчĕ пире анне.

## 107

Пĕлĕт çинче питĕ нумай çăлтăр. Кашни çыннăнах хăйĕн çăлтăрĕ пур, вăл этем çуралсан тухать, вилсен çĕре ӳкет тет. Çăлтăрсем пурте пĕр пек мар тет. Пĕрисем пĕчĕк, теприсем пысăк, çутă е тĕксĕм.

«Хур кайăк çулĕ» — çăлтăрсен ушкăнĕ, вăл хур кайăксем вĕçсе çӳренипе пулнă тет.

## 108

Ĕлĕк икĕ çын лашисем çине утланса, виçĕ йыттине ертсе сунара кайнă тет. Инçе çул çинче сивĕпе шăнса вилнĕ тет, вĕсенчен вара Алтăр çăлтăр пулса тăнă тет.

## 109

Чăвашсем çăлтăрсене тĕрлĕ ят хурса пĕтернĕ: Ала çăлтăр, Кĕвенте çăлтăр, Çут çăлтăр, Çурăмпуç çăлтăр.

Кашни çыннăн пĕр çăлтăр теççĕ. Çăлтăр аннине курсан ăста та пулсан çын вилчĕ пуль теççĕ. Хăшĕ-хăшĕ çăлтăр аннине курсан: «Ман çăлтăр тӳпере», — теççĕ.

Çĕнĕ çул каç çăлтăрсем нумай пулсан пăрçа (горох) ăнса пулать теççĕ.

Çурăмпуç çăлтăрне пĕр-икĕ каç курмасăр тăрсан вара карчăксем питĕ хăраççĕ: «Самана улшăнать пулĕ, Çурăмпуç çăлтăрĕ çухалчĕ», — теççĕ. Çăлтăрсем питех çутă пулман вăхăтра е çуттисем сахал, тĕксĕммисем нумай пулсан карчăксем пĕр çĕре пухăнсан вара çавăн çинчен калаççĕ: «Кăтруçăн пит тĕксĕм çăлтăрсем нумай, тĕнчере хуйхăллă çын нумай пуль», — теççĕ.

## 110

Хор кайăк çолĕ тесе Хор торă кайнă çола калаччĕ. Вăл çол пит инçетре. Аслă торăсен кашнин хăйĕн сорăмĕ пор. Хорăн сорăмĕ кунта мар. Унта кайăксем анчах вĕçсе çитме полтараччĕ.

## 111

Пĕлĕт çинче çутă çул пек йĕр пур. Ăна вырăссем Млечный Путь теççĕ.

Чăвашсем çак çутă çула Хур кайăк çулĕ теççĕ. Хур кайăксем вĕçсе иртнĕ тет те хăйсем хыççăн çапла çутă йĕр хăварнă тет пĕлĕт çине. Çавăн хыççăн вара Хур кайăк çулĕ теме пуçланă.

## 112

Ĕлĕк-авал пĕр çын выçăпа аптранă пулнă. Вăл кӳршисенчен кивçен улăм пама ыйтнă, анчах никам та кивçен улăм пама килĕшмен. Ним тума аптранă хресчен кӳршĕ улăмне вăрлама пуçланă. Çапла вăл темиçе хутчен улăм вăрласа килнĕ. Анчах та пĕр каçхине улăм вăрласа таврăннă чухне сасартăк вăйлă çил тустарма пуçланă та çак çынна улăмĕ-качкипех тӳпенелле çĕкленĕ. Çав çынна çил таçти инçетри çĕршыва вĕçтерсе кайнă. Улăмĕ сапаланса кайнă та тӳпе çумне çыпçăнса ларнă. Çавăнпа ăна «Сар улăм сарнă çул» тесе каланă тет. Кайран çавăнта кăнтăра каякан кайăксем ларса каннă тет. Вара çав вырăна кайран «Хур кайăк çулĕ» тесе ят панă тет.

# II. ÇӲЛТИ ТĔНЧЕ

*Чăваш хайлалăхĕнче Тавра Тĕнчен виçĕ пайĕ — Çӳлти тĕнче, Сут тĕнче тата Леш тĕнче пур. Вĕсен тытăмĕсене авалхи этем хăйне расна ăнлантарнă. Çапах та пĕтĕм ăнкарулăх никĕсне пурнăçра, çĕр çинче мĕн курни кĕрсе юлнă. Çавăнпах Çӳлти тĕнчери Турăсемпе Ырăсем, Леш тĕнчери Усалсемпе Тĕселсем çĕр çинчи çынсем манерлех хăтланаççĕ.*

*Çӳлти тĕнче çичĕ хутлă. Тӳпе айĕнче кашни хучĕн хăйĕн вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ пур — пĕр пĕлĕчĕ сумăр валли,тепри — çил варкăшĕ е тăвăл валли, çиччĕмĕш хутĕнче турăсем пурăнаççĕ-мĕн. Чăваш Кереметсене (Кереметри асăну çурчĕсене) çичĕ хутлă лартнă. Ахальтен мар аялти тата çӳлти пайĕсене тăвата енлĕ, варринчисене сакăр енлĕ хăпартнă. Кусем хайла-хачмакра упранса юлнă тĕн вĕрентĕвĕнченех килнĕ. Чăваш вĕрентĕвĕпе тĕнче тăвата енлĕ. Çӳлти (Аçа) тĕнчепе Сут (Ама) тĕнче пĕрлешсен Тавра тĕнче енĕсем саккăр пулаççĕ.*

*Малтанхи турăсем сĕр синчех пурăннă. Аслă несĕлсем турă пекех пысăк хисепре шутланнă. Амаксар кереметĕнче пуççапакансене турăсем Амату çинче пурăнаççĕ, кĕлĕ-чӳк вырăнне Пӳлер енчи çӳллĕ сăртран анаççĕ тесе ăнлантарнă. Чăн та, Аслă Чӳклемене сăрманçăпа мамале Пурнăç (чӳк) йывăçĕ патне Хĕвел тухăç енчи сăрт çинчен сăрман каласа тухаççĕ.*

*Çӳлти тĕнче тытăмне Турăсемпе ырăсем тата çылăха кĕмен сăваплă çынсем пурăнакан çĕршыв — Çăтмах кĕрет. Вăл çĕршывра танлăх,тĕрĕслĕх, илемпе тăнăслăх хуçаланать. Суякан, çаратакан, хаснăнакан çук унта. Çынсем çĕр çинчи юратнă ĕçпех пурăнаççĕ, виçеллĕ ĕçлеççĕ, хаваслă канаççĕ. Çăтмах тĕнчи — тĕрĕслĕхпе ырлăх тĕнчи. Чăваш халапĕсенче Çăтмахпа Тамăка хирĕçлетсе кăтартнă. Этемлĕхе сиен туса пурăннă çылăхлă çынсем Тамăк хуранне лексе вĕреççе, çынсене ырă туса ĕмĕре иртернисем Çăтмах пахчинче сăвап курса савăнаççĕ. Тамăкпа Çăтмах халапĕсенче кайранхи тĕнсенчен куçнă витĕм хытă палăрать. Турă сучĕ çинчен каланисем ытларах чухне Библи вĕрентĕвĕнчен куçнă.*

*Чăваш тĕнĕн пĕр пысăк хăйне евĕрлĕхне палăртса хăвармалла: ытти тĕнсем çĕр çинче асап курнисем Леш тĕнчере ырлăхра пулĕç тесе вĕрентнĕ. Чăвашсен сартăш тĕнĕ çапла калать: этем çĕр çинче мĕнле, мĕн ĕспе пурăннă, лере те сав ĕсех тăвать. Çылăха чăваш тĕнĕ укса е сăмах панишĕн каçармасть. Кашни сиенлĕ ĕçе икĕ хут ырă ĕç тунипе тӳрлетмелле. Пурăннă чухне тӳрлетмелле, унсăрăн этем чунĕ Çăтмаха лекеймĕ, Тамăкрах вĕтелене.*

## ТУРĂСЕМПЕ ЫРĂСЕМ

*Çӳлти тĕнче хуçисем — турăсемпе ырăсем. Вĕсем этеме, этемлĕхе, Çут тĕнчене ырă сунаççĕ, ĕрчесе аталанма пулăшаççĕ. Чăваш хайлисенче чи авалхи тĕслĕхсем нумай мар. Ĕлĕкех çырса илмен пирки вĕсем хăвăрт улшăнса пĕтнĕ.*

*Чăваш туррисемпе ыррисен ячĕсем, Н.И.Ашмарин çырнă тăрăх, пилĕк çĕртен иртеççĕ. Вĕсен пайăр ячĕсем те пур. Пурин те хăйсене çирĕплетсе панă вырăнĕ, ĕçĕ-тивĕçĕ тата хуçаланмалли «кантурĕ» паллă. Аслă (Мăн) турă, ĕçри турăсем, турăсем умĕнче тăрансем, сыхчисем, кĕтнеççисем тата ыттисем темиçе ушкăна пайланса тăраççĕ. Çӳлти тата Çут тĕнчери турăсемпе ырăсем хăйсем кăна 12 ушкăна (тĕпчевçĕсем «разряда» тенĕ) кĕреççĕ (Проблемы национального в развитии чувашского народа. Чебоксары, 1999. С.249).*

*Чăваш туррисем авалхи грексеннинчен те нумайрах. Вĕсен пайăр ячĕсем хаймак-хачмака сахал лекнĕ: Турă ятне тĕлли-палли асăнма та, сăмахласа вĕтетме те юраман.*

## ÇӲЛТИ ХĂВАТСЕМ

*Турăсем йышпа пурăнаççĕ. Вĕсен ытларах чухне амăшĕ пур: Турă амăш, Кепе амăш, Çĕр амăш, Хĕвел амăш т. ыт. те. Çавăнпа та Çӳлти Турра асăнса кĕлтунă чухне унăн ашшĕпе амăшне те «Çӳлти Туррăн ашшĕпе Çӳлти Туррăн амăшĕ» тесе мухтаса кĕлтăваççĕ. Çут тĕнче турри, Хĕвел турри, Çĕр турри, Вут турри, Вăрман турри, Хир турри (Ана турри), Чун çуратакан турă, Мул çуратакан турă т. ыт. асăннă вăхăтрах кĕлĕре вĕсен ашшĕпе амăшне мухтаса «Çĕр ашшĕпе Çĕр амăшне, Хĕвел ашшĕпе Хĕвел амăшне, Çил ашшĕпе Çил амăшне» тесе калаççĕ. Турра хăйне, ашшĕпе амăшне асăннă хыççăн Пӳлĕхе, Пихампара, Кепепе, Хăрпана асăнаççĕ. Вĕсем хыççăн хăйсен пĕлтерĕшĕпе аяларах шайри ытти сăваплă ырăсене мухтаса кĕлтăваççĕ: Асла тухнă Аслă ырăсене, Вăталăх ырăсене, Кĕçĕн ырăсене тата вырăнти ырăсене (пĕрпĕр вырăн, ял, хула, çырма ячĕпе çыхăннисем пулаççĕ) хăйсен ячĕсемпе асăнаççĕ (Вылăри ырăсем, Чĕмпĕрти ырăсем т. ыт. те). Турăсен пĕлтерĕшне кура хăш туррине мала хурас, хăшне мĕн хыççăн лартасси кĕлĕсенче аван курăнать: аслăрах турăсене малтан, кĕçĕнреххисене хыççăн асăнаççĕ.*

*Кашни килĕн хăйĕн турри-ырри пур. Вăл — çав çемьен ăру пуçлăхĕ, мăн аслашшĕ е несĕл пуçĕ. Çав турăсем шутĕнче çĕр ĕçпе пурăнакан ушкăнсен хăйсен Уй турри (Ана турри) пулнă. Вăл анасем хушшинче пурăнать, тырра пулла сыхлать.*

*Уйрăм çемье туррисен шутне Пир амăш туррине те кĕртмелле. Пир амăш туррине çыннăн хĕвел тухнă чухнех çиччĕ авăнмалла пулнă, унсăрăн пир тăрăхĕ ниепле те ăнмасть тенĕ. Ахальтен мар чăваш Ана турри часчас пырса çӳренине, Пир турри пилĕке авнине юратнă!*

*Чăвашсен хайлалăхĕнче авалхипе кайранхи хытах хутăшса кайнă. XIX–XX ĕмĕрсенче çырса илнисенче вырăс тĕнĕн ӳкерчĕкĕсем нумай. Чылай чухне Аслати вырăнне Георгий Победоносец, Кепе вырăнне Апостол, Микконă вырăнне Николай Угодник тата ыттисем кĕрсе ларнă.*

*1722 çулта Амаксар керемечĕн Хуралĕ турăсен пайăр ячĕсене пачах асăнмалла мар, аслă чӳклемере те çын илтмелле мар каламалла тесе чару кăларнă.*

*Ҫав чарака 1990 ҫулта тин илнӗ. Ӑна илнӗ хыҫҫӑнах Янӑш Хӑяхванӗн (вӑл Ишек ламшарӗ — тӗн управҫи пулнӑ) хучӗсем тупӑннӑ. Ҫав хутсенче унччен тӗпчевҫӗсене паллӑ пулман пайӑр ятсем пур. Хальлӗхе вӑл турӑсен пичетре ҫакӑн пек ячӗсем пичетленнӗ: Апӑр — тӑм ал ӑстисен турри, Авкун — тасалӑх турри, Акар — ҫӗр ӗҫ турри, Алпашӑ — ял-хула турри, Акань — вут турри, Ана — уй-хир турри, Апаш — шыв-шур турри, Ӑсмӑрт — вилӗмсӗрлӗх турри, Камал — ҫумӑрпа ӗрчев турри, Мӑртӑк — манӑҫу турри, Патал — укҫа-тенкӗ, пурлӑх-ырлӑх турри, Саватар — тӗрӗслӗх турри, Саркун — ҫӑтмахрисен турри, Типшар — вӗри ҫанталӑк турри, Хаман — сывлӑхпа хӑват турри, Чӑрпанта — ҫӗр айӗнчи пурлӑхсен турри, Эрре — килӗшӳ турри... Н.И.Ашмарин, Н.В.Никольский тата ытти тӗпчевҫӗсен архивӗсенче чӑваш туррисен, ыррисен, хаярӗсемпе усал-тӗселӗсен ячӗсем питех те нумай. Вӗсенчен чӗрӗкӗ те хайла-халапсенче палӑрса юлман, ахӑртнех, текех халап-юмахра тупӑнас та ҫук. Анчах мӗн ҫырӑнса юлнине сӑнани авалхи чӑвашсен тӗнчекурӑмне анлӑ уҫса кӑтартать.*

*Хайлаллӑ халапсене тимлӗ ҫырса илмен пирки турӑсен, ырӑсен, сыхчисен, кӳркӗҫсен, ҫунатсен, пирӗштисен, пӳлӗхҫӗсен, упрансен, пӑхансен, кӗтенсен, ҫавӑн пекех хунаҫҫисен, кӗтнеҫҫисен, никӗҫҫисен тата ытти ырӑсен пайрӑмлӑхне пӑтратса пӗтернӗ. Мӑн Турӑ ушкӑнне Шыв, Ҫӗр, Вут, Сывлӑш (Ҫил е Пӗлӗт) туррисен йышӗ (ашшӗ-амӑшӗ, ачи-пӑчи) кӗрет. Пӗрремӗш ушкӑнри Кепе, Пӳлӗх, Хӑрпан, Пихампар турӑсем ытти турӑсене канаш парса, шӑпа ҫырса тӑраҫҫӗ.*

*Ытти турӑсем (Аслати, Ашапатман, Пан, Авкун, Акар тата ыттисем) хӑйсен вырӑнӗнче Мӑн Турӑ тата Кепепе Хӑрпан, Пӳлӗхпе Пихампар сӗннисене пурнӑҫласа пурӑнаҫҫӗ.*

*Ҫӳлти тӗнчепе Ҫутӑ тӗнче хушшинче ҫӳрекен ырӑсем йышлӑ. Вӗсен пӗтӗмӗшле ушкӑнӗнче Пӳлӗхҫи, Пирӗшти, Хӗртсурт, Камал ячӗсем паллӑрах. Вӗсем Хаярсене кӳнеҫтереҫҫӗ, усалсемпе тӗселсене аяккалла хӑвалаҫҫӗ.*

*Чӑваш туррисем, ыррисем, хаярӗсем ҫинчен калакан хайлаллӑ халапсене вӑхӑт тӑрӑх тимлесе пӑхсан халӑх тытӑмлӑхӗн йӗрки ансатран кӑткӑсланса пынине, халӑхпа влаҫ уйрӑлса кайнине курма пулать.*

## 113

Пирӗн чӑваш ҫыннисем, тӗне кӗнисемпе тӗне кӗменнисем, пурте куҫӗсене курӑнса тӑракан япаласене, курӑнманнисене, пурне те Турӑ пирӗншӗн туса пултарнӑ теҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӑна, ҫынсемшӗн ҫапла тӗрлӗрен ырлӑх тунӑшӑн, кирек хӑҫан та асӑнса, ӗненсе, тав туса, кӗлтуса, мухтаса, пуҫҫапса пурӑнаҫҫӗ.

Чӑваш ҫыннисенӗн ӑсӗпе пулсан Турӑ хӑй ҫӳлте, пӗлӗт ҫинче пурӑнать имӗш, ҫавӑнпа кӗлтунӑ чухне ӑна: «Эй, Мӑн ырӑ, ҫут ҫанталӑка туса тытса тӑракан ҫӳлти Турӑ!» — тесе асӑнса мухтаса кӗлтӑваҫҫӗ.

## 114

Хайсен тӗнӗпех пурӑнакан халӑхсем — арсем, мӑкшӑ-ирҫесем, ҫармӑссемпе чӑвашсем ҫапла ӗненеҫҫӗ: тӗнчене пултарнӑ хыҫҫӑн халӑхсем пӑсӑлса кайнӑ, ачасем ашшӗсене итлеми пулнӑ, пиччӗшӗпе шӑллӗсем пӗрпӗринпе хирӗҫме тытӑннӑ, пӗр ҫын тепӗрне кӳрентерме пуҫланӑ. Ҫӳлти Турӑ пӗлӗт ҫинчен ҫӗр ҫине ятарласа янӑ Пӳлӗхҫӗпе Пихампар хыпарҫӑсем урлӑ ҫакна илтсе пӗлнӗ те ҫӗр ҫине этем раттине тытса тӑма хӑй ывӑлӗсенчен

пĕрне патша туса антарса янă. Çĕр çинче çуралнă хĕрпе пĕрлешсе тата çĕр çинчех пурăнса вăл хăй те, йăхĕ те çынсем пекех вилĕмлĕ пулса тăнă.

Хăйсен тĕнĕллĕ халăхсем Çĕр пулăхне çӳлти Аслă Турă парать, çĕре этеме Аслă Турă панă тесе ĕненеççĕ. Çапла хисеплесе вĕсем çĕнĕ тыр-пула хăйсем тутанса пăхиччен малтан Аслă Турра тата çĕр тытан Хăвата чӳклесе параççĕ.

## 115

Ĕлĕк Турă пӳртрен пăртак кăна çӳлте çӳренĕ пулнă тет. Кил картинче çӳрекен пĕр пĕчĕкрех ача ăна сăкăр сăмсипе пенĕ, вара Турă çӳле улăхса кайнă. Турă халĕ те çӳлтех пурăнать.

## 116

Çӳлти тĕнче йĕркине малтанах Халав турă тытса пынă. Вăл ватăлнă, ăна улăштарма вăхăт çитнĕ. Халав хăйĕн сыхчи пулса пурăннă умра тăранне — Ана турра — пил парса хăварнă.

Халав туррăн тепĕр сыхчи Типшар çакна пĕлнĕ те Ана турра килĕштерми пулса кайнă, Ана туррăн вăхăчĕ тулмасăрах ăна вырăнтан кăларма пикеннĕ. Типшар Хĕвел туррине Кăварпие хăй май çавăрнă та Ана турра пĕлĕт çинчен антарса янă. Ана турă ун чухне вăйпитти пулнă-ха, вăл ватăлас патне те пыман.

Ана турă Кăварпипе Типшара хытах çилленет. Пĕррехинче тытса хĕнеме те шутлать, анчах ниепле те тытаймасть. Лешсем ялан тарса çӳреççĕ, май пулсанах алхасса каяççĕ. Çавсене йĕркене кĕртес тесе Ана турă çӳл енче çӳреме хăйĕн аслă ывăлне Аслатие кăларса ярать, çĕр çинчен аяккарах хăваласа кĕçĕн ывăлне Ташмаша тăратать.

Çавăнтанпа вара çӳлте Кăварпипе Аслати, аялта Типшарпа Ташмаш вăй виçеççĕ. Кăварпи ытлашши хĕрӳленсе кайсан Ана турă Аслатие чĕнсе илет. Типшара хирĕç Ташмаш тухать. Аслати килнине курсанах Кăварпи пытанса ларать, вăрттăн çĕртен Аслатие вут чулĕпе перет. Çавăн чухне вара çиçĕм çиçет. Аслати вĕçекен чулсене тыта-тыта илет, хирĕç вăркăнтарать. Тепĕр чухне тытса ĕлкĕреймест те чулĕсем Ана çинех ӳкеççĕ. Аçа чулĕ тетпĕр çав чулсене. Вĕсем вырăн-вырăнпа нумай тĕл пулаççĕ. Вĕсене Ташмаш Аранçи ту çине хăпарта-хăпарта купаласа хума тытăннă. Анчах пиччĕшĕ вăл чулсене Кăварпие пеме илмен. Вара Ташмаш кӳреннипе йĕрсе янă. Унăн куççулĕ хытă юхнă, вĕсенчен Аранçă шывĕ пуçланса кайнă. Çакна курса тăнă Кăварпи Ташмашран кулма пуçланă, Типшарĕ типĕтме тытăннă. Аслати çавсене пурне те хытă çилленсе каять те хыттăн кăна сурса хурать. Нӳшкетсе çумăр çума пуçлать. Аранçи шывĕ тулса каять, Ана турă çыннисем валли типĕ вырăн та юлмасть. Вĕсем ту çине хăпараççĕ, унта таса вырăн тупаççĕ. Типшар та, Ташмаш та халран кайнине курсан Ана турă Аслатипе Кăварпие хăй патне чĕнтерет, малашне мĕнле пурăнмаллине вĕрентсе хăварать.

Аранçи ту çинче чулсенчен купаланă капмар кеpемре улăп ачасем çуралнă. Аслине Алихун, кĕçĕннине Тарихун тенĕ. Вĕсем Аслатипе Кăварпирен çуралнă пулса тухать. Çав улăпсенчен кайран ытти улăпсем йышланса кайнă.

Пĕр кăкĕнчен, Алихунран, çĕр ăстисем — Мамăш, Чамăш, Ямăш улăп-

сем — çитĕннĕ. Тепĕр кăкĕнчен, Тарихунран, тӳпе пуç хуралçисем Хурату, Сарăту, Чĕкету çуралса ӳснĕ.

Çав улăпсем халĕ те пурăнаççĕ тет. Вĕсем Çĕрпе Пĕлĕт вылянине çулсеренех кураççĕ.

## 117

Турă пĕрре тесе ĕненеççĕ чăвашсем. Турă вăл ырă кăмăллă, аслă, пурне те курса тăракан шульăш, ытти пурте унран килет. Вăл тӳпере пурăнать. Туррăн ашшĕпе амăшĕ пур. Турă час-часах çĕр çине анать те шапшурă тум тăхăнса, вăрăм шурă сухаллă ватă çын пулса, алла туя тытса тĕрлĕ вырăнсенче çӳрет. Вăл пуринчен ытларах акнă анасем тăрăх çӳрет, йăрансем хушшипе çӳрет, çу каçиччен утса тухман йăран хăвармасть. Çакна пĕлекен йĕркеллĕ чăваш хирти ĕçсем вăхăтĕнче нихçан та ана çине тула тухмасть, мĕншĕн тесен Турă сукмакĕсене варалама юрамасть тесе шутлать. Çапла тума юраманнине ачасем те пĕлсе тăраççĕ.

Пĕртен-пĕр аслă Турăсăр пуçне чăвашсен урăхран вăйлă хăват çук. Турă тунă ытти вăйсене е умĕнче тăрансене — пирĕштисене, ырăсене чăвашсем Турă тесех калаççĕ, анчах вĕсенчен пĕри те пĕртен-пĕр аслă Турă вырăнне шутланмасть. Вĕсем пурте Турра пăхăнса çӳреççĕ, Турă вĕсене кăтартса тăрать. Турă вĕсене кашнинех пĕр-пĕр ĕç хушса панă, вĕсем çав ĕçшĕн яваплă, вăл ĕçе хăйсем пĕлнĕ пек çавăрмалла мар, Турă кăтартнă пек туса пыма тивĕç.

Çав хĕсметшĕн этем вĕсене хисеплет. Хисеп тумасан вĕсем çилленеççĕ. Хăйсене хисеплеменшĕн ку хăватсем хăйсем Турăран иртеймеççĕ пулсан та этеме сиен кӳме пултараççĕ.

## 118

Пĕррехинче Кепе (Шăпа) çĕр çинчи чĕрлĕхсем вăхăта мĕнле ирттернине пĕлме Пихампара Пĕлĕтрен Çĕр çине янă. Пихампар пуян чăваш патне пынă та иртен-çӳрен пек пулса çĕр каçма яма ыйтнă. Лешĕ тӳрккессĕн хуравланă, ял хĕрринчи чухăн патĕнче çара хуралтăра çĕр каçма каланă. Пихампар пĕлĕт çине таврăнсан çакăн çинчен Кепене каласа панă. Кепе ăна ĕненмен, çĕр çине Пӳлĕхçе антарса янă. Пӳлĕхçĕпе та çаплах пулса тухнă.

Кепе иккĕшне те ĕненмесĕр çĕр çине хăй аннă та Пихампарпа Пӳлĕхçĕ каланисенех курнă. Кепе çара хуралтăра çĕр каçнă чухне чухăн чăвашăн ывăл, пуянăн хĕр çуралнă. Пĕрле çĕр çинче çӳрекен Пӳлĕхçе Кепе çапла хушнă: тин çуралнă чухăн ывăла телейлĕ те пуян пулма, пуянăн хĕрне арсăр юлма тата тăхăр хут качча тухма çырса хур тенĕ.

Пуян чăваша юмăç Турă унăн телейне чухăн ача патне куçарма çырнине каласа панă, лешĕ вара çав ачана пĕтерме хăтланнă.

Кепе (Шăпа) хӳтĕленине пула чухăн ача пуян ятне тивĕçнĕ, юлашкинчен вăл пуянăн сакăр хут упăшкасăр тăрса юлнă хĕрне качча илнĕ.

## 119

Тĕнче Турри уçлăха çутатса тăрать, Кепе турă çĕр çинче тата çĕр айĕнче хуçаланса тăрать. Кепе пĕлĕтсем çинче пурăнать, хăй çумĕнче икĕ хыпарçă тытса тăрать. Вĕсенчен пĕри Пӳлĕхçĕ, тепри Пихампар. Пӳлĕхçĕ çĕр çине тин çуралнă ачасен шăпине тата Юмăçсем хунă ячĕсене çырса па-

рать. Вӑл ҫав ӗҫсене туса пӗтерсен пӗлӗт ҫине таврӑнать те Кепе (Шӑпа) турра пӗлтерет. Пихампар выльӑх-чӗрлӗхе тискер кайӑксемпе кашкӑрсенчен упрать тата пӗтӗм тӗнчене вут парса тӑрать. Ҫавӑнпа чӑваш сӑра вӗретме тытӑннӑ чухне малтан Пихампара чӗнет, вара тин хуран айне вут чӗртет.

Чун паракан Турӑ ҫинчен чӑвашсем ҫапла шутлаҫҫӗ: Ҫӳлти Турӑ хушнипе вӑл ачана ҫуралас умӗн чун парать. Унччен ҫав чуна вӑл тухӑҫ енче ятарлӑ вырӑнта упраса пурӑнать.

### 120

Шур ватта курсассӑн чӑвашсем ку Турӑ-тӑр теҫҫӗ, ун пеккине ҫӑкӑр та, темӗн те параҫҫӗ ыйтсассӑн, ыйткалакан ача-пӑчана курсассӑн Туррӑн ҫӗр ҫине пӗлме янӑ пирӗштисем теҫҫӗ.

### 121

Темшӗн чӑвашсем Турра ӗмӗрне те пуян тесе, мӗн тесе туман; ялан мӗскӗн, ыйтса-пуҫтарса ҫӳрекен ватӑ пек туса ӗненнӗ.

Усал: «Юратнӑ йывӑҫна, юратнӑ суртна, юратнӑ ҫыннӑна, юратнӑ выльӑхна кӗрӗп», — тесе калат тет. Турӑ: «Кӗрӗсӗн, нимӗн те шеллемӗп, пурне те ҫапӑп, манӑн пурте хамӑн, ҫапсан та пурне те хам илеп», — тесе калат тет.

### 122

Чӑвашсем Турра хӑш чухне ҫынсене курӑнсах ҫӳрет теҫҫӗ. Турӑ ҫуран та ҫӳрет, лашапа та ҫӳрет теҫҫӗ. Час-часах Турӑ ыйткалакан пек пулса килӗрен киле ҫӳрет теҫҫӗ. Хӑйне юп куракан ҫынна тӗрлӗрен ырӑлӑх, телей парса хӑварать теҫҫӗ. Лашапа ҫӳренӗ чух Турӑ шап-шурӑ ҫӳҫлӗ-сухаллӑ ватӑ ҫын пек пулса ҫӳрет теҫҫӗ, лаши ялан кӑвак пулать теҫҫӗ.

### 123

Ӗлӗк пӗр ҫын уйра тырӑ акнӑ тет. Ун патне Турӑ чупса пырса пытанмалли вырӑн ыйтнӑ. Тыр акакан Турра вӑрлӑх пурки айне пытарнӑ. Вӑрлӑх пурки ҫине тӑпра муклашки хунӑ. Турӑ тырӑ акакана вӑрлӑх пурки айне кӗрсе ларас умӗн: «Эсӗ ку тырра вырма ыранах кил», — тенӗ. Тепӗр кунне, Турӑ каланӑ пек, вӑл ани ҫине ҫурлапа тырӑ вырма пынӑ. Ӗнер ҫеҫ акнӑ тырӑ, Турӑ каланӑ пек, пулса ҫитсе хумханса ҫеҫ ларнӑ. Ҫавӑ тырра вырма пуҫласан ана ҫине Усал чупса ҫитсе тырӑ выракантан: «Эсӗ ҫакӑнтан Турӑ иртсе кайнине курмарӑн-и?» — тенӗ. Тыр выракан: «Ҫакна акнӑ чух курнӑччӗ», — тенӗ. Вара Усал: «Эй, ӗнтӗ уна халӗ хӑваласси те ҫук, питӗ аякка кайнӑ ӗнтӗ вӑл, хӑвса ҫитесси пулмарӗ-ҫке ӗнтӗ ӑна», — тенӗ. Турӑ вӑрлӑх пурки айне пытаннине асӑнса хӑш-пӗр чӑвашсем тӑпра муклашки хуркаланӑ.

### 124

Ӗлӗк пӗр карчӑкпа старикӗн пӗр ывӑлпа пӗр кинӗ пулнӑ. Пӗрре ывӑлӗпе кинӗ вӗсен асапа кайнӑ. Вара вӗсем кӑнтӑрла тусан* сывӑрма выртнӑ. Ҫывӑрнӑ вӑхӑтра ывӑлне Турӑ ҫӳле хӑй патне илнӗ те виҫӗ кунччен Хӗвел

* Кӑнтӑр апачӗ.

кĕтме янă. Вăл ача Хĕвелпе пĕрле пынă чух ашшĕ-амăшĕ çурчĕ тĕлне çитсен ак çапла каласа юрланă:

Сакăр сарă лашам пур тетĕп,
Тăхăр турă лашам пур тетĕп.
Урисене тапа тăрĕç тетĕп,
Пуçĕсене уха тăрĕç тетĕп.

Ашшĕ-амăшĕ те, арăмĕ те вăл çапла юрланине илтсен пит хыт макăрнă. Çапла вăл ача виçĕ кунччен те, Хĕвелпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ çурчĕ тĕлне çитсен, ялан çавсене каласа юрланă. Кашни кун унăн сассине илтсе ашшĕпе амăшĕ те, хăйĕн арăмĕ те, лашисем те пит макăрнă. Ашшĕ-амăшĕн те, арăмĕн те, лашисен те куçĕсем суккăр пулнă макăрса.

Вăл ачана Турă виççĕмĕш кунне хĕвел кĕтме пĕчченех яман, унпа пĕрле тепĕр ача янă. Каçхине таврăнсан Турă кайран янинчен ыйтнă:

— Санăн юлташу макăрмасть-и? — тенĕ.

Лешĕ каланă:

— Çук, макăрмасть, — тенĕ.

Турă вара карчăкпа старикĕн ывăлне каланă:

— Ме сана çак тутăра, çак тутăрпа ирхине тăрсан ху куçна шăл, унтан аçу-аннӳ куçне, арăму куçне тата лашусен куçĕсене шăл, — тенĕ, — вĕсем халĕ пурте суккăр пулнă, — тенĕ.

Ача вара выртса çывăрать, ирхине тăрсан пăхать — куçĕ курмасть. Хайхи тутăрпа шăлнă та, куçĕ куракан пулнă. Пăхнă та вара килĕнче тăнине пĕлнĕ. Вара ашшĕн куçне, амăшĕн куçне тата арăмĕн куçне, лашисен куçĕсене çав тутăрпа шăлнă та — пурте куракан пулнă. Вĕсем халĕ те пĕрле савăнса пурăнаççĕ.

## 125

Аслатиллĕ çумăр çунă чухне пăшаллă пĕр хресчен юхан шыв хĕррипе утса пынă. Тӳпере аслати кĕрленĕ. Турăран кулса Шуйттан кутне пĕлĕт еннелле тăратнă та аллипе çапса кăтартнă. Çакна хресчен курнă та Шуйттана пăшалпа пенĕ. Шуйттан кайнă та ӳкнĕ. Аслати авăтма пăрахнă. Турă пĕлĕт çинчен аннă та хресчене калать:

— Эсĕ манран та вăйлăрах пултăн иккен. Эпĕ ĕнтĕ çичĕ çул ку Шуйттана хăвалатăп, ку таранччен те тытса пулмарĕ, — тет.

## 126

Таса Иоф ятлă çын пулнă тет. Вăл пуян пулнă. Унăн çĕрĕсем çинче лаша кĕтӳ, ĕне, сурăх, качака, сысна кĕтĕвĕсем уйрăмшарăн çӳренĕ. Пĕррехинче вăрă-хурахсем пырса тапăнаççĕ те лаша кĕтĕвне веçех пĕтереççĕ. Çак кĕтмен усала пĕлтерсе тарçи часрах хуçи патне чупса каять. Лаша кĕтӳçи каласа пĕтернĕ çĕре ĕне кĕтӳçи, унтан сурăх, качака, сысна кĕтӳçисем чупса çитеççĕ. Вĕсем пурте хăйсен кĕтĕвĕсем пĕтни çинчен каласа параççĕ. Иофăн пĕтĕм пуянлăхĕ пĕтет. Вара вăл Турă умне чĕркуçленсе ларать те ăна кĕлтума пуçлать.

Пĕр кунхине Шуйттанпала Турă калаçса лараççĕ. Шуйттан калать: «Çынсем Турра пуян чух кăна асăнаççĕ. Ахаль чух çук», — тет. Турри калать: «Çук, вĕсем чухăна ерсен те Турра манмаççĕ, ăна астăваççĕ, ăна кĕлтăваççĕ. Куртăн-и, Иоф çука ерчĕ. Анчах вăл пурпĕрех Турра манмасть.

Кашни кун Турра пуҫҫапать, унран пулăшу ыйтать. Итле, Шуйттан, эпир ăна малалла сăнăпăр. Эсĕ ăна пĕтĕмпех пĕтер, ҫемйине те, ачисене те, тарҫисене те, анчах хăйне ан тив».

Шуйттан чăнах та Турă хушнă пек тăвать. Иоф хăй кăна юлсан та Турра манмасть, кашни кунах кĕлтăвать.

Кайран Турри калать: «Шуйттан, эсĕ хăйне те пĕтер, анчах чунне хăвар», — тет.

Вăл чăнах та пĕррехинче ҫак Иоф патне пырать. Шуйттан куҫа курăнмасть. Вăл Иофа пĕтĕмпех чăрмаласа пĕтерет, тирне, ҫӳҫне татса кăкласа илет. Иоф ҫĕрех пуҫлать. Ҫапах та Турра манмасть. Вăл ăна юрлать, унран йăлăнать, пулăшу ыйтать. Иоф темĕнле йывăрлăхра та Турра манманнишĕн, ăна хисепленишĕн Турă Иофа телей кӳрет.

Вăл ҫĕнĕрен пурăнма пуҫлать. Тепĕр хут авланать, ҫемьеллĕ пулать. Ачисем малтанхинчен те йышлăрах пулаҫҫĕ. Пуянлăхĕ те вунă хут ытларах пулать тет.

### 127

Тур амăшĕн ывăлне усалсем вĕлерсе пытарнă тет. Унтан Тур амăш шыраса тупсан чĕрĕлнĕ те, амăш мунча кӳртсе пуҫне туранă тет. Исус Христос ăрамра ачасене ҫăмарта парса ҫӳрет тет. Исус Христос патне шуйттан ачи пынă тет. Унăн та ҫăмарта илесси килет тет. «Христос воскрес», — тесе калать тет те, ăна та вара ҫăмарта панă тет. Савăннипе ку шуйттан ачи амăшĕ патне чупса кайрĕ тет. Амăшĕ килĕнче автан, ҫăрттан пулли пĕҫернĕ тет те, ҫиме сĕтел ҫине хатĕрлеҫҫĕ тет. Ачи чупса кĕчĕ тет те: «Христос воскрес», — тесе калать тет. «Ма апла калан?» — тесе калать тет амăшĕ. «Христос мана ҫăмарта панă», — тесе калать тет. «Вилнĕ вĕт вăл», — тесе калаҫҫĕ тет. «Чĕрĕлсе тăнă, мана ҫăмарта пачĕ. Христос воскрес, Христос воскрес», — тесе калать тет. Ҫапах ĕненмеҫҫĕ тет. «Чĕрĕлнĕ пулсан ҫак автан чашăк хĕррине тăрса ҫунатне ҫапса авăттăр», — тесе каланă тет. Пиҫнĕ автан ҫавăнтах чашăк хĕррине ларса ҫунатне ҫапса авăтнă тет. «Христос чĕрĕлнĕ пулсан ҫак пиҫнĕ ҫăрттан пулли шыва сиктĕр», — тесе каланă тет. Ҫавăнтах урайĕнче шыв пулса тăнă тет те, ҫăрттан пулли шыва сикнĕ тет. Вара усалсем хăранипе шыва сиксе пĕтнĕ тет. Ҫăмарта илекенни сиксен те шыва путман тет вара.

### 128

Этемлĕх пуянлăхпа алхасса кайнă тет. Пĕр-пĕрне палламан, пĕр-пĕрне сума суми пулнă тет. Турă вара этемлĕхе лăплантарасшăн Нушапа Нуша амăшне туса янă тет.

Ҫавăнпа кашни ҫын пуҫне Нушапа Нуша амăшĕ пур теҫҫĕ.

### 129

Пӳртре кĕтесре турум пулнă. Унти Турăша никамăн та тĕкĕнмелле пулман, кам та кам Турă сăнне алăпа тытсан вăл е суккăрланать, е аманать. Вăрăмтура пĕр хитре хĕр пурăннă, вăл ҫав Турăша илсе пытарнă. Ҫакăн хыҫҫăн хĕр пилĕкпе аптранă, курпун тухса туяпа ҫӳреме пуҫланă. Каярах-

па тăванĕсем Турăш вырăнтан çухалнине сиссен, сăлтавĕ çакăнта пытаннине пĕлсен Турăша пикенсех шыранă. Шыраса тупсан вырăна лартнă, хĕр майĕпен тӳрленме пуçланă. Юсаннă, малтанхи пекех хытă утма, чупма пултарнă. Çакăн хыççăн Турăша никам та алăпа тĕкĕнмен.

## 130

Аслă Турă пĕринче Миколă турăпа пĕрле (теприсем Хĕрлĕ Çырпа пĕрле теççĕ) çĕр çинче çӳренĕ те çухалсах кайнă. Çырмара тĕтĕм явăннине курсан Аслă Турă ку çырмара кам та пулсан пурăнать пулĕ тесе шутланă та Миколă турра çул ыйтма янă. Миколă кайнă та çырмара мунча курнă. Мунчара сасă илтĕннĕ. Унта папаçça карчăкĕпе ача çуратакан арăм пулнă. Миколă мунчана пӳрт тесе шутланă, тӳрех унта кĕрес тенĕ, анчах алăкне уçнă кăна, ун çине папаçça карчăкĕ милĕкпе хăмсарса сиксе ларнă.

— Ăçта! Ăçта, вырăс, каятăн?! — тесе кăшкăрса карчăк Миколăна милĕкпе çатлаттарнă.

Миколă турă Аслă Турă патне тарăхса таврăннă та халь çуралнă ачана çав апăс карчăкĕшĕнех телейсĕр хăварма ыйтнă.

Çапла ыйтнăран ачан ашшĕ-амăшĕ выльăхĕ-чĕрлĕхĕ çавăн чухнех вилсе пĕтнĕ, пĕтĕм килĕ-çурчĕпе пурлăхĕ çунса кĕлленнĕ. Хирти тыррине пăр çапса кайнă. Ача чухăн ӳснĕ, ыйткаласа çӳренĕ. Кăштах çитĕнсен тара кĕрĕшнĕ, анчах темле тăрăшсан та телейĕ тупăнман. Вăл ĕçе кĕнĕ килте инкек хыççăн инкек сике-сике тухнă, вара хуçисем ăна хăваласа кăларса янă.

Каччă хуйха ӳкнĕ. Пĕринче ăна ватă карт курăннă (пĕрисем çав ватă Хĕрлĕ Çыр пулнă, теприсем вара Аслă Турă хăй пулнă теççĕ), пĕр пуян чăваш патне кĕтӳçе кĕрĕшме хушнă. Кĕтӳ кĕтнĕшĕн укçа илмелле мар, пĕрремĕш çул хура путексене пама, иккĕмĕш çул шурă путексемпе пăрусем ыйтма хушнă. Каччă çапла калаçса татăлнă та.

Пĕрремĕш çулхине унăн хуçин кĕтĕвĕнче пĕтĕм путексемпе пăрусем хура çуралнă. Унччен ку хуçан хура выльăх-чĕрлĕх пачах курăнман пулсан та. Тепĕр çулне пĕтĕм путек-пăру шурă çуралнă. Хуçа путек-сурăхне панă та каччăна кăларса янă.

Каччă çитĕннĕ путек-сурăха пасара тухса сутнă.

Пĕринче кĕтӳç выльăхĕсем шыв хĕрринче тапăрта выртнă. Çав вăхăтра Аслă Турăпа Миколă каллех çĕр çине аннă пулнă та татах çухалса кайнă. Миколă турă кĕтĕве курнă та кĕтӳç патне çул ыйтма пынă. Кĕтĕве курсан тĕлĕнсех кайнă, ун çинчен Турра каласа панă. «Кам кĕтĕвĕ вара ку, кун пек ăратлă выльăх ку таранччен пĕрре те курман», — тенĕ Миколă. Аслă Турă каланă: «Ку, ара, леш папаçça карчăкĕ сана милĕкпе хĕненĕ чухне çуралнă ача кĕтĕвĕ вĕт!» — тенĕ.

— Çук, Аслă Турă! — тенĕ Миколă. — Эпĕ ăна телей ан парăр тенĕччĕ, туртса ил унран выльăх-чĕрлĕхе!

Турă унпа килĕшнĕ те кĕтӳ çине выльăх мурне янă, вара каçчен кĕтӳрен çăм татки те тăрса юлман.

Макăрса янă каччă. Ăна лăплантарма пĕр ватă карт килнĕ те яла кайса çынсенчен хăйне валли парлак выртакан çĕр лаптăкне ыйтса илме каланă. Каччă çак ватă каланă пек тунă, илнĕ ана çине ыраш акнă. Тырри тĕлĕнмелле аван пулнă.

Анчах та вырмана тухас умĕн çав хӳхĕм анана Миколă турă курнă та тырри камăн иккенне ыйтса пĕлнĕ. Вăл Турра каллех çав каччăна телейсĕр

хăварма ыйтнă. Итленӗ Турă, ана çине пăр çутарнă. Ана çинче тырă кăшт кăна тăрса юлнă. Каччă малтанхинчен те хытăрах ӳлесе макăрса янă. Ватă çын ăна лăплантарса çапла каланă: «Юлнă ырашне вырса ил, çапса кӗрт, салат ту, кӗрпе çуртар, сăра тутар, пăтă пӗçер, чӳклеме ирттер. Ял халăхне тата иртен-çӳренсене пурне те хăнала».

Маттур йӗкӗт каланă пекех тунă. Ĕçкӗ-çикӗ хӗрсе пынă чухне Аслă Турăпа Миколă инçе мар иртсе пынă. Вӗсем каллех çултан çухалса кайнă пулнă. Миколă ĕçкӗ ĕçнӗ çӗре пынă та çул ыйтнă. Йӗкӗт ăна пӗтӗм ăшă кăмăлпа йышăннă, пит лайăх хăналанă. Савăнса кайнă Миколă Турăран ку йӗкӗте тӗнчен пӗтӗм ырлăхне пама ыйтнă. «Тăхта-ха, кам пулчӗ вара ку маттур çын?» — тесе ыйтнă Миколă. «Ав лешӗ, сана папаççа карчăкӗ кӳрентернӗ чухне çурални», — тенӗ Турă. «Тин ним те тума çук, ăна çапах та мӗнпур ырлăхна пар эппин. Ытла та лайăх этем», — тенӗ Миколă.

Çавăнтанпа маттур йӗкӗт аван пурăнса кайнă, ун пек пуянни таврипе те урăх пулман.

## 131

Чăвашсем Турă пӗлӗт çинче пурăнать тесе шутлаççӗ. Анчах вăл пур çӗрте те хуçа пулса тăрать теççӗ. Турăпа Пихампара Пӳлӗхçӗ пулăшаççӗ. Пихампар выльăх-чӗрлӗхе сыхлать. Пӳлӗхçӗ çуралнă ачасене чун парса ят хурать.

Турă пур халăхсене те тытса тăрать. Анчах кашни халăхăн хăйӗн Турри пур. Çак Турăсем пӗр Турăна пăхăнса тăраççӗ.

Чăвашсен Турри — Киремет. Вăл вăрманта пурăнать тет. Çавăнпа та халăх Турра пуççапма вăрмана çӳрет.

## 132

Çӗре Ама Турă тесех шутланă. Авалхи тӗн йӗркинче çӗрпе çыхăннă вăйсене çакăн пек ятсемпе каланă: Çӗр йышӗ, Çӗр амăшӗ, Çӗр ашшӗ, Хӗрлӗ çыр (Çӗршыва кӗтекен, пăхакан сыхчи, кӗтӳçӗ), Çӗр сулу, Çӗр пӗвӗ.

## 133

...Малалла тӗрлӗ хăватсем каяççӗ, вӗсенчен хăшӗ асли-кӗçӗннине уйăрма йывăр. Чăвашсем вӗсене мӗнле ĕçре тăнине кура хакласçӗ. Пӗрин ĕçне аслăраха хураççӗ, теприне кӗçӗнрехе лартаççӗ. Йӗркипе пăхса тухăпăр. Аслати — аслă атте. Çумăрпа аслати кăларакан тата ăна тытса тăракан хăват. Вăл выраççен Илле пророкӗпе танлашать, халăх курăмӗнче вӗсем пӗр пекех тăраççӗ.

Çӗр йышӗ — çӗр хуçи е урăхла каласан — çӗре пăхса тăран. Тепӗр çӗрте ăна Тыра-пулă çуратан теççӗ. Ку хăвата Аслă Турă çӗре сăнаса тăма хушнă. Чăвашсем ăна хисеплемелле, чӳк тумалла тесе шутлаççӗ. Чӳкне тырпулă акса пӗтерсен тăваççӗ, ӳсен-тăран лайăх çӗклентӗр тата Çӗр йышӗ тӗрлӗ инкек-синкекрен, хурт-кăпшанкăран, пăр çапасран, саранча тапăнасран тата ыттинчен сыхлатăр теççӗ.

Тата Хӗртсуртпа Карта хуçи пур. Хӗртсурт пӳртри çынсене упрать, ыйхă чăптисене пусарать. Картари хуçа вара юратнă лашасен çилхисене якатса, тураса ярать. Юратман лашасен апатне туртса илет, вара вăл лашасем мăнтăрланаймаççӗ.

## 134

Аслă Турă хыççăн иккĕмĕшле турăсем — Çĕр, Шыв тунă Турă, Чун çуратан Турă малта тăраççĕ. Этемĕн те, выльăх-чĕрлĕхĕн те чунĕсем пĕрех, вĕсене пĕр Турă — Чун çуратан Турă çуратать. Ĕлĕкех чăвашсен кун пек уйрăм хăватсем пулман, кĕлĕ калана чухне кăна вĕсем Аслă Турра, Пултараканпа Пурнăçлакана, çапла тĕрлĕ каласа ӳкĕтлеме пуçланă.

## 135

Вĕç-хĕррисĕр анлăхра çӳрекен Аслă Турăсăр пуçне малтан урăх нимĕн те пулман. Малтан вăл шыв тунă, унта вăрлăх сапнă; вăрлăхран ылтăн пек йăлтăртататакан çăмарта пулса тăнă. Çăмарта пĕтĕленнĕ, тинĕс хумĕсем ăна çапса ватсан унран Пĕлĕтпе Çĕр уйрăлса тухнă.

Туррăн ар тата ама вăйсем пулнă, вĕсене пĕрлештерсе вăл хĕр тунă. Аслă Туррăн хĕрĕ качча кайсан кĕçĕн турăсене çуратнă.

## 136

Эпĕ ача чухне пирĕн аттесем çак турăсене ĕненсе пуççапатчĕç: 1. Çӳлти Турă, вăл ырă, пуринчен те асли, çӳлте — пĕлĕт çинче пурăнать. 2. Турă Амăш. 3. Пӳлĕхçи. 4. Пихампар. 5. Хăрпан. 6. Хурт турри. 7. Выльăх турри. 8. Хĕвел Амăшĕ. 9. Хĕвел çуначĕ. 10. Кепе (Шăпа). 11. Пирĕшти. Урăх турăсем нумайччĕ.

Çĕр çинчи турăсем: 1. Киремет. 2. Йĕрĕх. 3. Тӳр кĕлли. 4. Вутăш. 5. Ийе. 6. Хĕртсурт. 7. Çĕр йыш тата урăххисем те. Чиркӳ туррисем: 1. Ишекри (Микул турă). 2. Çĕрпӳ хулинчисем: сопорти, Хуратумри, Касански чиркĕвĕнчи. 3. Шелнерти. 4. Чурачăкри. 5. Пӳртри кĕтесри турă. Чассанисенчи турăсем: Рынка сали патĕнчи, Çĕрпӳри, Ишекри, Шелнерти. Тата урăххисем те нумайччĕ, халь пурне те астумастăп.

Пирĕн таврара ĕлĕк ак çапла киреметсем пурччĕ:

1. Мăн Киремет. 2. Кипĕт (Кибет). 3. Çĕн ыр. 4. Сив çăл. 5. Хашкалăхри. 6. Ăнсуйĕнчи. 7. Еремкасси çырминчи. 8. Хĕрлĕ тăвайккинчи тата урăххисем те. 9. Йĕрĕх пĕр çĕрте анчахчĕ, ăна Ласăр пиччесен кив кĕлетĕнче пурăнать тетчĕç.

Пирĕн аттесем çав турăсене пурне те чӳк туса е мамале пăрахса, е укçа пăрахса, е çурта лартса, е тата урăх тĕрлĕ парне парса пуççапатчĕç. Пирĕн анне турăсене, киреметсене пит хытă ĕненекен çынччĕ, вĕсене епле кĕлтумалли йĕркесене аттерен те ăстарах пĕлетчĕ.

## 137

Чăваш ыррисем: 1. Йĕрĕх. 2. Тӳр кĕлли. 3. Киремет. 4. Хĕртсурт. 5. Пирĕшти. 6. Килĕш хуçи.

1. Йĕрĕхе мĕнле çырлахтармалла: вăл тытсан-тусан пĕр çатма икерчĕ пĕçерсе, уна пĕтĕм çу туса тата юсман пĕçерсе çырлахтараççĕ.

2. Тӳр кĕллине мĕнле çырлахтарасси. Уна асăнса чăх е така пусса çиеççĕ те вара çавăн шăммине çавă Тӳр кĕлли патне кайса çĕр айне пытараççĕ, пĕр 5 пус укçа пăрахаççĕ, вара çырлахать. Вăл-мĕн хĕн-хур парать, алăсăр-урасăр тăвать пăхăнмасан.

3. Киремет. Вăл мĕн хĕн пани: кĕсен-çăпан парать, çавăнпа хĕн кăтартать.

4. Хĕртсурт. Вăл пӳртре пурнать тет, çынна курăнмасть тет. Хăш çыннăн

арҫын Хĕртсурт тет, хăшĕн хĕрарăм Хĕртсурт тет. Вăл Хĕртсурта ĕлĕк питĕ хисепленĕ, аслă праҫникре ҫыннисем пĕр-пĕр ҫын патне ĕҫме кайнă чухне ун валли пăтă, ҫăмарта, сăра кăмака ҫине лартса хăварнă. «Ĕҫсе ҫи, ыр Хĕртсурт», — тенĕ. Вăл мĕне пĕлтернĕ: Хĕртсурта лайăх пăхсан вăл усалсене, чир-чĕрсене киле кĕртмест тет вара.

5. Пирĕшти. Вăл ҫынпала пĕрле ҫӳрекенни тет, ҫыннăнне сăвапнеҫылăхне ҫырать тет. Ҫывăрсан-тусан тĕлĕк ҫавă кăтартать тет. Чуна хăйпе пĕрле илсе ҫӳрет тет.

6. Килĕш хуҫи. Вăл лашана, ĕнене, сурăхсене, качакана, сыснана тата ытти чăх-чĕпсене, хур-кăвакалсене пăхса тăраканни. Ăна ĕлĕк асăнса карта чӳк тунă.

## 138

Туррăн тата хăнчен* пуҫне ашшĕпе амăш пур, вĕсем те имĕш хăй пек ҫӳлте пĕлĕт ҫинче пурăнаҫҫĕ. Ҫав пиркепе Ҫӳлти Турра хăне ҫапла асăнса кĕлтунă чухне унăн ашшĕпе амăшне те «Ҫӳлти Туррăн ашшĕпе Ҫӳлти Туррăн амăшне» тесе мухтаса кĕлтăваҫҫĕ.

Нумайăшĕ тата ҫак тĕнчене туса пултарса, ҫут ҫанталăка та туса тытса тăракан Ҫӳлти Туррах, вăл ҫапла ҫынсемшĕн темĕн те пĕр тĕрлĕ ырă япаласем туса пултарнăран, вĕсенĕн турри тесе мухтаса, уйрăм-уйрăм ячĕсене асăнса, ак ҫапла кĕлтăваҫҫĕ: Ҫут тĕнче туррине, Хĕвел туррине, Уйăх туррине, Ҫĕр туррине, Вар туррине, Вăрман туррине, Хир туррине, Чун ҫуратакан турра, Мул ҫуратакан турра тата ытти япаласенĕн туррисене те тесе. Хăшĕ тата ҫав Ҫĕре, Хĕвеле, Ҫиле тăвакан турра асăннă чухне унăн ашшĕпе амăшне те мухтаса: «Ҫĕр ашшĕпе Ҫĕр амăшне, Хĕвел ашшĕпе Хĕвел амăшне, Ҫил ашшĕпе Ҫил амăшне», — тесе кĕлтуса илеҫҫĕ.

Ҫапла турра хăне, ашшĕпе амăшне асăнсан, унтан тата унăн умĕнче ҫӳрекеннисене те асăнса кĕлтăваҫҫĕ: Пӳлĕхҫе, Кепене, Пихампара, Пирĕштие. Кăсене те ҫапла асăнса кĕлтусан, унтан вара вĕсенĕн умĕнче вулăра выртакан, сăваплă ырăсене асăнса, мухтаса кĕлтуса пурăнаҫҫĕ: Асла тухнă аслă ырăсене, Вăталăх ырăсене, Кĕҫĕн ырăсене тесе. Ҫавăн чухнех тата Хĕрлĕ ҫырпа ҫĕрти патшана та асăнса илеҫҫĕ.

Ялĕ-ялĕпе тата ҫак халĕ каланă ырăсене асăнса кĕлтунă чухне тата ҫĕрти урăх ырăсене те асăнса кĕлтăваҫҫĕ: ĕлĕк пĕрле пĕр ялта пурăнаканнисем, кайран хăйсенĕн ялĕ уйрăлса пĕтсен, харкам хăй ялĕ ҫĕрпе типтерлĕрех вырăна куҫсан ырăсем туса ҫавсене асăннă; ҫав вăхăтрах хăшĕ тата ытти ют ялсенĕнне те асăнса илеҫҫĕ. Хуласенче-мĕнте пурăнаканнисем тутарпа вырăс тĕнĕсене ҫаврăнса кайса хулисене те асăнса кĕлтунă: Чĕмпĕрти ырăсем, Хусанти ырăсем, Шупашкарти ырăсем, Маккарьери ырăсем, Улатăрти ырăсем, Чипер ырăсем тата ҫапла хăйсен ҫĕрĕнчи ытти ырăсене те асăнса кĕлтунă.

## 139

Хирпе Ана турра е сывлăшĕ — Ана турри е Ой турри. Тырă ӳснĕ вăхăтра вăл ҫум курăкран, усал курăксенчен тасатать, вылйăх-чĕрлĕх ватса пĕтерессрен сыхлать т. ыт. те.

Ана турри кил хуҫи ана ҫине час-часах пырса ҫӳренине юратать. Ана турри ҫынна хирте курать те ĕҫĕсемшĕн тав тăвать; енчен те тыр-пул хуҫи

---

* Хăйĕнчен.

лӳппер пулсан, Ана турри ӗҫӗсене ним вырӑнне те хумасть пулсан Ана турри унӑн тыр-пулне упрама пӑрахать. Хирти турӑсен ячӗпе кӗллени темиҫе ҫулта (10 е 15) кӑна пулать тата пуриншӗн те кӗл тӑвакан чаплӑ юмӑҫсемпе пӗлӳҫӗсем Ой турринчен пӗтӗм малаллахи ҫулсемшӗн лайӑх тыр-пул парнелеме ыйтаҫҫӗ.

Чӑвашсем тырӑ акма тухсан кашни ҫулах ҫуркунне Хир туррисен ячӗпе пысӑках мар кӗлӗ ирттереҫҫӗ. Ҫавӑн чухне чӑвашсем хире пӗҫернӗ чӑх ҫӑмартисем илсе тухаҫҫӗ, вӗсене вӑрлӑх ҫӑмартисем теҫҫӗ.

## 140

Уй турри анасем хушшинче пурӑнать. Вӑл тыр-пула сыхлать, ӑна сӑнаса, упраса пурӑнать. Тыр-пула ҫитӗнтерет. Уй турри хӑй патне хуҫи часчасах килсе тӑнине юратать. Ана ҫине хуҫи час-часах килмесен Уй турри питӗ ҫилленет.

Уй туррине пехиллесе, ӑна хуҫи кил-йышӗпе пӗрле кӑнтӑр апат вӑхӑтӗнче ана ҫинче кӗлтунӑ, апат ҫинӗ.

## 141

Ӗлӗк-авал кашни килтех несӗл пуҫӗсем хӳтӗлевҫӗ Турӑ вырӑнне шутланнӑ. Ватӑ чӑвашсем хушшинче ҫакӑн пек сӑмах ҫӳренӗ.

«Ма тырӑ пулмасть?» — пӗр начар ҫын калать. Ана пӑхма вӑл кайрӗ. Ҫав начар ҫын ани ҫумӗнче пӗр ырӑ ҫын икӗ лашапа сӳре сӳрелет. Ҫавӑ сӳре сӳрекен сӳрине силлет те ҫум курӑкне начар ҫын ани ҫине ывӑтать. «Ах, — тет, — эсӗ ман тырра пултармастӑн!» Тытрӗ хайхи ҫынна, тытрӗ те — ватать те ватать. «Ах, ан вӗлер мана, вот мӗн калам сана, — тет. — Эпӗ ырӑ ҫыннӑн турри пулап; санӑн турӑ вӑрманта тунката ҫинче тӑмра каласа урине явса ларать».

Ҫакӑ кайрӗ вӑрмана та ӑна тытса ватма тапратрӗ. «Текех каплала ҫӳремӗп, — Турӑ калать, — сана пуйтарӑп». Ҫавӑ ҫын кайран пуйрӗ.

## 142

Пирӗн ялти Туник Виттисен асламӑшӗ эпир пӗчӗккӗ чухне турӑсем ҫинчен нумай каласа паратчӗ. Витясен асламӑшӗ пӗчӗк чухне те анатри Крыҫҫа Марисен ҫырми патӗнче, пысӑк тӗмеске ҫывӑхӗнче, чӳк туса ирттернӗ. Унта вара кашни урамранах пухӑнса ваттисенчен пуҫласа пӗчӗккисем таранах ырӑ сывлӑш, турӑсем ҫинчен те асӑнтарнӑ. Витясен асламӑшӗ каланӑ тӑрӑх, унта тем тӗрлӗ турӑсене те асӑнтарнӑ. Уйрӑмах Ҫӳлти Турра нумай асӑннӑ. Ҫамрӑк ачасене ваттисем Турра пуҫҫапма, яланах ырӑ йӑласене пӑхӑнса пыма вӗрентнӗ. Ҫӳлти Турра итлемесен ачасем армуш пысӑкӑш ҫеҫ пулаҫҫӗ имӗш, ҫын вилсен те тамӑка лекет тесе калаҫнӑ. Сывлӑш турри ҫинчен те нумай калаҫнӑ. Икерчӗне пӗҫерсе хурӑн тӑррине пырса ҫакмасан ҫут ҫанталӑк ҫав ҫыншӑн яланах хура, тӗтреллӗ курӑнать тенӗ. Ӑна кашни эрне кун парне памалла пулнӑ.

Пир амӑш турри ҫинчен те нумай каласа панӑ Ульяна аппасене вӗсем пӗчӗк чухне. Пир тӗртме ларсан ҫыннӑн хӗвел тухнӑ чухнех ҫиччӗ пуҫҫапмалла пулнӑ. Пуҫҫапмасан пир тӑрӑхӗ ниепле те ӑнаҫлӑ вӗҫленеймест тесе те нумай калаҫнӑ.

## 143

Турă тĕнче туса пĕтерсен шутларĕ-шутларĕ тет те: «Ма ман пĕчченех тĕнче тытас, ыттисем те тертленччĕр. Пайлас ку тĕнчене», — терĕ тет. Часах хăй патне çвиттисене* пухрĕ тет.

— Ну, — терĕ тет Турă, — пĕччен тертленсе çитет. Кашнине сире: Пӳлĕхçине — çут тĕнче, Пихампара — вăрман тĕнчи, Шуйттана — шыв-шур тĕнчи, Эсреле — вил тĕнчи, — терĕ тет.

Çавăнтан вара кашниех хăй тĕнчине хăй пĕлнĕ пек тыткалаççĕ тет.

## 144

Турă палли пур çĕрте те пулмасть тата вăл пурне те яланах пĕр пек курăнмасть. Вăл пур çынна та савса пăхмасть. Сахал мар чухне чăвашсене çилленет, хăйне тупма пултарайманшăн вĕсем çине инкек-синкек те ярать.

Карчăксем йывăçран тунă Турă паллине йăлтах хĕрлĕпе пиелеççĕ, хĕрлĕ кĕпе, хĕрлĕ çĕлĕк, хĕрлĕ алсишсем тăхăнтартаççĕ те вăрманта е шурлăхра ăçта та пулсан пытарса хураççĕ. Хăш-пĕр ялсенче Турă паллине йытă е кушак тĕслĕ те тăваççĕ — ку тăхланран е пăхăртан шăратса тунă йĕрĕх. Тепĕр чухне чăвашсем ăна темиçе кун шыраççĕ.

Тупнă паллăна вăрманта лартаççĕ е хуралтă таврашĕнче пурака хураççĕ. Уяв кунĕсенче ун патне тĕрлĕ ĕçме-çиме илсе пыраççĕ.

Александровка вулăс салинчи чăвашсем каланă тăрăх, вĕсен Турă паллийĕсем ял çывăхĕнчи Кӳкĕрченпе Шухăт шурлăхĕсенче пурăнаççĕ. Вăрах вăхăт çумăр çуман шăрăх кунсем çитсен, çĕр типсе çурăлса пĕтсен, пĕтĕм православи тĕнĕллĕ халăх çумăр çутарас тесе кĕлĕ иртте рсен, чăвашсем ытти хресченсемпе пĕрле кĕлĕ тунă хыççăн хăйсен Турри патне кайса чӳк тăваççĕ. Вырăс турри пулăшмасан та хамăрăн турă çумăр çутарĕ теççĕ.

Пĕтĕм чăвашсем çав карчăк хыççăн (вăл пĕр аллинче кăвакарчăн, тепĕр аллинче çерçи тытса пырать) кӳлĕ патне каяççĕ. Унта карчăк кайăксен пуçĕсене çу сĕрет, шыва чиксе кăларать, вара алăран вĕçертсе ярать.

Пухăннисем асăрхаса тăраççĕ: кайăксем çӳле вĕçсе кайса çуначĕсене силлентерсен çумăр пулать, тыр-пул ăнса ӳсет, енчен те çĕр çумĕпе аялтан вĕçсе кайса пĕр-пĕр çĕре ларсан Турă чăвашсен чӳкне йышăнман пулса тухать.

Чӳк тунă чухне карчăк тухăçалла пăхса сăмах калать: «Турă! Пире ан пăрах, çумăр пар, управ пар!»

Кун хыççăн чăвашсем хывăнмасăрах кӳлĕри шыва кĕреççĕ, кăвайт чĕртеççĕ, пăтă пĕçерсе хăналанаççĕ.

## 145

Пĕр вăхăтра Турă, Пӳлĕх, Хĕрлĕ çыр тата пирĕштисем Турă патне хăнана пуçтарăнчĕçĕ тет. Ĕçсе çисен Турă килне таврăнас умĕн Пӳлĕхçĕн хăнисене тепĕр кун хăй патне хăнана çунапа пыма каларĕ тет. Хăй вара ытти хăнисенчен маларах тухса кайрĕ тет. Пӳлĕхçĕ патне хăнана пуçтарăннă вăхăтра çулла, çимĕк вăхăчĕ пулчĕ тет. Турă тухса кайсан Пӳлĕхçĕ хăнисем пĕр-пĕринпе Турă çинчен калаçа пуçларĕçĕ тет: «Епле ку хăй Турă пулсан

* Хăй çумĕнчисене.

та нимӗн те пӗлмест, ҫак ҫулла, шӑрӑх вӑхӑтра, хӑй патне ҫунапа пыма хушать, — тесе калаҫаҫҫӗ тет Турӑ ҫинчен. — Апла пулсан вӑл пирӗнтен аслӑ та, ӑслӑ та мар, эпир хамӑрах ӑслӑ, хамӑрах унтан аслӑрах», — терӗҫӗ тет.

Тепӗр кун чӑнахах та юр ҫуса тултарчӗ тет, Турӑ каланӑ пек. Хӑнисем Турӑ патне ҫунапа пымалла пулчӗҫӗ тет. Ӗҫсе ҫисен Турӑ хӑнисене каларӗ тет: «Акӑ эсир манран ӑслӑ пулма хӑтлансаттӑрччӗ, куратӑр-и ӗнтӗ юр ҫунине? Эп капла туман пулсан хура халӑхӑн тырри-пуллине хурт пӗтерме тытӑнӗччӗ. Халь юр ҫунипе хуртсем вилсе пӗтрӗҫӗ, хура халӑх та савӑнать. Мана та ӑшӑ кӑмӑлпа тав тӑвать».

Ҫавӑнтан вара Пӳлӗх, Хӗрлӗ ҫыр, пирӗштисем Турӑран кӗҫӗн пулмалла пулчӗҫӗ тет.

## 146

Ҫут ҫанталӑка туса тытса тӑракан Турра та, унӑн умӗнчи Пӳлӗхе, Кепене, Пихампара, Пирӗштие ҫывӑх ырӑсем пулнӑ. Ҫав ырӑсем ҫак тӗнчерен кайнӑ сӑваплӑ ырӑ ҫынсемех пулнӑ. Ку эпир пурӑнакан тӗнчере пурӑннӑ чухне вӗсем Турӑ хушнинчен пӗртте иртмен, кирек хӑҫан та вӑл епле пурӑнма хушнӑ, ҫавна туса унӑн умӗнче ырӑ пулма тӑрӑшнӑ. Начар ҫынсене, мӗскӗнсене, ыйткалакансене вӑй ҫитнӗ таран мӗн пурӗпе пулӑшма тӑрӑшнӑ, чирлӗ ҫынсене астунӑ. Ӑҫта ҫитнӗ унта Туррӑн ятне мухтаса вӑл ҫырнӑ ӗҫсенчен ҫынсене иртме хушман. Ҫынсене ялан пӗр-пӗрне сума суса пурӑнма вӗрентнӗ. Патшана ларнӑ ҫынна, унӑн умӗнче тӑракан тӳресене кирек хӑҫан та пӑхӑнса-парӑнса тӑма хушнӑ. Хӑйсенӗн ӗмӗрӗнче ку тӗнчере ҫапла ялан ҫавӑн пек ырӑ ӗҫсем туса, ырӑ ӗҫсем вӗрентсе пурӑннӑ пирки пурте вӗсем Турра тата унӑн умӗнче ҫӳрекенсене ҫывӑх ырӑ ҫынсем пулнӑ. Халӗ ҫавӑнпа ӗнтӗ Ҫӳлти Турра кӗлтунӑ чухне ыттисене асӑннӑ ҫӗрте кӑсене те пӗрле асӑнса илсе кӗлтӑва пуҫлаҫҫӗ. Ырӑсем вӗсем виҫҫе уйӑрӑлнӑ: а) асла тухнӑ аслӑ ырӑсем, ӑ) вӑталӑх ырӑсем, б) кӗҫӗн ырӑсем.

Асла тухнӑ аслӑ ырӑсем. Ырӑсенчен ҫак эпир пурӑнакан тӗнчере пурӑннӑ чухне нумайӑшӗ пуринчен те ытларах ырлӑх тунисем, тӗншӗн асапланса вилнисем; Ҫӳлти Турӑ умӗнче те вӗсене хӑйсене урӑх ят пулнӑ — асла тухнӑ аслӑ ырӑсем тенӗ.

Вӑталӑх ырӑсем. Асла тухнӑ аслӑ ырӑсенчен сахалтарах ырлӑх тунисенӗн хӑйсене урӑх ят пулнӑ — вӑталӑх ырӑсем тенӗ.

Кӗҫӗн ырӑсем. Вӑталӑх ырӑсенчен сахалтарах ырлӑх тунисене кӗҫӗн ырӑсем тенӗ. Вӗсем ҫак тӗнчере пурӑннӑ.

## 147

Турӑ пӗлӗт ҫинче чаплӑ кермен пек ҫуртра пурӑннӑ тет. Тӗрлӗ выльӑхчӗрлӗх, кайӑк-кӗшӗк, хур-кӑвакал пит нумай пулнӑ тет унӑн. Ӗлӗк Турӑ ҫынсене уяса пӑхсах тӑнӑ тет. Кайран, выльӑхӗ-чӗрлӗхӗ ӗрчесе кайсан, ҫавсемпе аппаланса ҫынсем ҫинчен мансах кайнӑ тет.

Туррӑн хӗрӗ пур тет. Пӗрре ҫапла пӗлӗт ҫинчи курӑка Турӑ выльӑхӗсем йӑлтах ҫисе янӑ тет те хӗрне кӗтӳ кӗтме ҫӗр ҫине янӑ тет. Турӑ пӗлӗт хуппине уҫса кӗҫҫе пӑрахса выльӑх-чӗрлӗхне ҫав кӗҫҫе тӑрӑх антарса-хӑпартса тӑнӑ. Ирпе выльӑхсене ҫӗре антарнӑ, каҫхине каялла хӑпартнӑ.

Туррӑн хӗрӗ кӗтӳ пӑхса ҫӳренӗ чух пӗр каччӑпа паллашса каять те, кусем пӗр-пӗрне питӗ юратса пӑрахаҫҫӗ. Мӑшӑрланма шутлаҫҫӗ ҫаксем, анчах та Турӑ хӑй хӗрне этем ывӑлне парасшӑн пулман. Турӑ хӗрне этем ывӑлӗ вӑрласа илсе килет, хӗрӗ ҫӳренӗ ҫӗре шалча ҫине хӗрӗн шур тутӑрне ҫакса хӑварать. Куна хӗрӗ хӑй ҫапла тума вӗрентнӗ. Шур тутӑра курсан Турӑ хӗрне вилнӗ тесе шутлать те шырамасть тенӗ. Турри, чӑнах та, шур тутӑра курать те хӗрӗ вилнӗ тесе урӑх шырамасть.

Темиҫе ҫул иртсен Турӑ хӑйне улталанине пӗлет. Хӗрӗпе каччӑна каҫарать те вӑйлӑ туй туса парать. Ҫав вӑхӑтран вара Турӑ каллех этемсен пурнӑҫне уяса пӑхса тӑма тапратнӑ тет.

## 148

Ӗлӗк пӗр поян, хытӑ ҫын порӑннӑ тит. Вӑл ҫын никампа та паллашман тит. Хӑна-вӗрле кӗртмен тит. Ни кивҫен никама паман тит. Ни шӑнса килнӗ ҫынна пӳрте кӳртсе ӑшӑнма яман тит. Ни выҫса килнӗ ҫынна тӑрантарса яман тит. Турра нихҫан та ҫорта лартман тит. Ҫак ҫын хытӑ пирки Торӑсем сота пуҫтарӑннӑ тит. Сотра онӑн ойри тырри-полли ҫорри анчах тохмалла тӑваҫҫӗ тит. Пӳлӗхҫӗ Торӑ ҫапла пӳрет тит. Ҫыру Торӑ ҫормалла тохмалла ҫырать тит. Илля Пралок ниепле те ытти Торӑсампа килӗштермест тит. Пуян ҫын тыррине авӑнтан виҫӗ пӑт анчах тохмалла сот тотарттарчӗ тит.

Илля Пралок ытти Торӑсампа сот тунине Торӑ ачи итлесе тӑнӑ тит. Вӑл вара йӑпӑр-япӑр хайхи поян ҫын патне пырса каларӗ тит: «Илля Пралок сан тырру авӑнтан виҫӗ пӑт анчах тохмалла сут тутарттарчӗ, — тесе каларӗ тит. — Эс виҫ кӗлте хор та авӑн ту та ҫап, виҫ кӗлте хор та авӑн ҫап», — тесе каларӗ тит.

Хайхи ҫын виҫ кӗлтерен авӑн хочӗ те ҫаппӑр тит. Кӗлечӗ-кӗлечӗпе тырӑ толтарчӗ тит.

Пуян ҫын авӑнӗ пӗтнӗ-пӗтмен Торӑ ачи тата килсе каларӗ те тит: «Сан тырруна Илля Пралок ҫил-тӑвӑлпа килсе паркӑн салатмалла, — тесе каларӗ тит. — Часрах нӳхрепсем ту та, нӳхрепсем ӑшне тырруна торт», — тесе каларӗ тит.

Хайхи ҫын йӑпӑр-япӑр нӳхрепсем туса тыррине онта толтарчӗ тит. Онччен те полмарӗ тит, хайхи Илля Пралок ҫил-тӑвӑлпа ҫитсе кӗлечӗсене пӑркӑн салатрӗ тит. Тыррине хайхи ҫыннӑнне топимарӗ тит.

Хайхи Илля Пралок нӳхрепсем ӑшне пуян ҫын тыррине пытарнине сисрӗ тит: «Хаяр ҫӑмӑрпа кайса, шӑши кӗмен шӑтӑка шу толтарам», — тесе каларӗ тит.

Хайхи Торӑ ачи пуян ҫынна пырса каларӗ тит: «Часрах кӗлетсем ҫӗнӗрен ларт та тырруна нӳхрепсенчен кӗлетсене торт», — тесе каларӗ тит.

Ҫынни йӑпӑр-япӑр кӗлетсем тоса тыррине кӗлетсем ӑшне чикӗрӗ тит. Торӑ ачи: «Халӗ, — тесе каларӗ тит, — пор хӑну-вӗрлӳне пуҫтар. Пор ҫынсен Торрисене чӗнсе пуҫтарса, кашнӑ ҫын килне кӗрсе ҫитеримастӑн полсан ҫынсен алӑкӗсем патне анчах пырса чӗн, — тесе каларӗ тит. — Кайран апат-ҫимӗҫ туса ӗҫтерсе-ҫитерсе яр, — тесе каларӗ тит. — Илля Пралока лайӑхрах пӑх», — тесе каларӗ тит.

Хайхи ҫын каланӑ пак пор Торӑсене поҫтарса ӗҫтерсе-ҫитерсе ячӗ тит. Илля Пралок ҫантан вара ҫак ҫынна текех тивмерӗ тит. «Ҫакна илтнӗренпе эпӗ кашни чиркӳве каймассерен Илля Пралока ҫорта лартатӑп. Илля Пралок чиркӳре йопа ҫинче, ҫорта лартма ытах кансӗр. Ҫорти ӳкет тата».

5. Заказ № К-4231.

## 149

Акӑ пӗр кун купец ҫука юлать. Унӑн виҫӗ ӳссе ҫитӗннӗ хӗр пулнӑ. Купец пӑшӑрханать: «Хӗрсем те ӳссе ҫитрӗҫ, вӗсене мӗнле ырӑ тӑвас?» Пӗрре ирхине вӑл Турра пуҫҫапма ларать. «Эй, Турӑ! Мана хута кӗр, ҫак хӗрсене телейлӗ ту. Эй, Турӑ, Николай Чутотворич!»

Пуҫҫапса пӗтерсен кантӑкран пӑхать. Укушка* ҫинче пӗр хутаҫ чӑмӑркки вырта парать. Хутаҫҫине салатса пӑхать те тӗлӗнсех каять, Николай Чутотворич пӗр хутаҫ ылтӑн хурса хӑварнӑ иккен. Ҫапла вара вӑл аслӑ хӗрне качча парса пуян та телейлӗ тӑвать. Купец кашни кунах турра кӗлтӑвать, унран пулӑшу ыйтать. Тепӗр икӗ хӗрне те телейлӗ тӑвать вӑл.

## 150

Пирӗн чӑвашсем Магомета Мухамет теҫҫӗ. Ун ҫинчен акӑ мӗнле сӑмах ҫӳрет. Мухамет вӑл питӗ чее ҫын пулнӑ тет. Хӑй чеелӗхӗпе кӑна мишерсене улталаса, хӑйне турӑ вырӑнне хисеплеттерсе пурӑннӑ тет. Ҫӗр ҫинче пурӑннӑ чухне вӑл капла улталаса пурӑнкалат. Эпӗ вилсен те мана хисеплеме ан пӑрахчӑр тесе вӑл тупӑкне тимӗртен тутарат та мичӗт маччине макнит (магнит) сӗртерет. Макнит вара Мухамет тупӑкне ҫӗклесе ҫыпӑҫтарнӑ тет. Ҫавӑнпа мишерсем халь те ӑна ӗненсе пурӑнаҫҫӗ тет.

## 151

Кашниех халӑх ҫинчен тӗнчере 77 тӗслӗ халӑх теҫҫӗ, 77 чӗлхе теҫҫӗ. Кашнӑй халӑхӑн хӑйӗн Турри пур теҫҫӗ. Ӗлӗк тутар Туррипе чӑваш Турри тавлашнӑ тет, вара тутар Турри чӑваш Туррине ҫӗнтернӗ тет. Вара чӑваш Турри хӑй те тутар Туррине пӑхӑнса пурӑннӑ тет. Тахӑш хӗрринчен сиксе тухнӑ вырӑс Турри вара хӑй чӑваш Туррине тин ҫӑлса кӑларать тет тутар Турри аллинчен. Тата вӑл вырӑс Турри хӑватлӑ пулнӑ, чут-чут тутар Туррине те хӑйне пӑхӑнтарас ҫӗртен аран хӑтӑлнӑ тутар Турри. Вара вӗсем темиҫе раз ҫапӑҫнӑ тет. Малтан тутар Турри те вӑрӑм ҫӳҫлӗ пулнӑ, вара вӑл ҫапӑҫнӑ чух лайӑх пултӑр тесе ҫӳҫне хыртарнӑ тет. Тата вӑл тутар Туррин пӗр ухмах ывӑлӗ пулнӑ та, ҫавна тыткӑна илнӗ вырӑс Турри. Ваттине анчах хӑй аллине илеймен.

## Пӳлӗхпе Пӳлӗхҫӗ

*Пӳлӗхҫӗ — Пӳлӗхпе Мӑн турӑ ҫумӗнче тӑракан, вӗсене пулӑшса, вӗсем хушнине туса тӑракан турӑ. Пӳлӗх — ҫынсене телей валеҫекен турӑ. Вӑл ҫын пурнӑҫне, ӑраскалне ҫуралсанах ҫамка ҫине ҫырса хурать теҫҫӗ. К.Милькович ун ҫинчен Турра чи ҫывӑххи тесе ҫырать. Пӳлӗхҫӗ— Пӳлӗх турӑ хыпарҫи, тутар чӗлхинче бӳлеучи— разделитель,податель,вестник. Пӳлӗхҫӗ Турӑ хушнипе ҫӗр ҫине анса ҫӳрет, Турӑ ячӗпе юмӑҫсене тин ҫуралнӑ ача пама хушать, ача шӑпине ҫырать. Н.Ашмарин Пӳлӗхҫӗ ятне «пӳл» (загородить) сӑмахран пулма пултарнӑ тет. (Пӳлӗх пӳрнинчен иртме ҫук теҫҫӗ.) «Пӳрнӗ» сӑмах та ҫак ӑнлавранах пулнӑ теме пулать. Пӳлӗхҫе кӗлтунӑ чух чӑваш ӑна Ырӑ Пӳлӗхҫӗ тет, вӑл ҫынна ырӑ тӑвассине ӗненет, шанать.*

---

* Чӳрече.

## 152

Пӳлĕх — çынсене телей салатакан турă. Çын пурнăçне, ăраскалне çуралсанах çамки çине картласа паллă тăвакан турă. Пурнăçа упракан турă. Пӳлĕхçĕ амăшĕ — Турă.

## 153

Пӳлĕхçи ача топнă çĕре пырать. Вара ача çамки çине çав ача мĕлле порнмаллине, кама качча илессине, мĕлле вилĕмпе вилессине çырса хорать.

## 154

Чăвашсен ăсĕпе пулсан, Турă пĕлĕт çинче хăй пĕччен кăна мар, ăна пăхăнса тăраканнисем виççĕн, пĕри Пӳлĕхçĕ, иккĕмĕшĕ Пихампар, виççĕмĕшĕ Пирĕшти.

Этеме çуралнă чухне Турă чун парать пулать. Ыттисене, телей таврашне е çав çын хăй ĕмĕрĕнче мĕн-мĕн курассине, Турă хушнипе, унăн умĕнче тăраканни Пӳлĕхçи кашни çынна çуралсанах унăн çамки çине çырса хурать имĕш. Çав çырăва кăкăр сĕчĕпе çусан та каймаç тесе чăвашсем юрлаççĕ.

Пихампар выльăх-чĕрлĕхсене, Пирĕштийĕ çынсене сыхлаççĕ.

## 155

Çут çанталăка туса тытса тăракан Çӳлти Турă умĕнче пурăнаканнисенчен чи асли Пӳлĕхçĕ ятлă пулнă. Турă хушнă тăрăх, вăл унăн çĕр çинчипе çут çанталăкри мĕнпур ĕçĕсене ĕçлесе тăраканни пулнă. Вăлах аплакапла чун çуралсан, мĕн тусан, çынсене пурăнăç çыраканни пулнă, хăшне ырă пурăнăç панă, хăшне тата усал пурăнăç. Турă хушнипех унăн умĕнче тата ăна пăхăнса тăраканнисем пулнă, пĕри — Кепе, тепĕри — Пихампар, тепĕр тата виççĕмĕшĕ — Пирĕшти.

## 156

Пӳлĕхçĕ Турă хушнипе çĕр çине анса çӳрет тет. Çĕр çинче вăл çуралнă ачасене шăпа валеççе çӳрет. Юмăççене çак çуралнă ачасене ят хума пулăшать. Хăйĕн ĕçне пĕтерсен Пӳлĕхçĕ Турă патне хăпарать тет.

## 157

Пит аслă ытти сывлăшсенчен пур Пӳлĕхçĕ ятлă сывлăш. Пĕр Турă умĕнче çак сывлăш пысăк вырăн йышăнса тăрать. Чăвашсем çак сывлăша пит хисеплеççĕ. Вĕсем калаççĕ ун çинчен: «Турă парсан та, Пӳлĕхçĕ пӳрмесен ырă курма çук». Турă парас тесен те мĕн те пулсассăн ырă япала, çавна Пӳлĕхçĕ пӳрмесен çав ырра курма çук. Чăвашсем ăнланнă тăрăх, çапла тухать, пĕр Турă çынсене хатĕрлесе хурать мĕн те пулсан, Пӳлĕхçи те çав япаласенех парать Турă хушнă тăрăх. Эпĕ ыйткаларăм нумайăшĕнчен: «Епле Турă хатĕрлесе хурсан Пӳлĕхçĕ чарĕ-ши?» — тесе каларăм. Чăвашсем мана каларĕç çавăн çинчен: «Пӳлĕхçĕ Турра чарма пултараймасть, апла пулсассăн та Пӳлĕхçĕ пӳрмесен Турă панă, хатĕрленĕ япалана илме çук». Çак сăмахсене шантарăшĕшĕн пĕр чăваш мана каларĕ çак сăмахсене. Пĕр çурта кил хуçи арăмĕ пĕçернĕ кĕсел панă сĕтел çине çиме. Хуçи

калать: «Акă паян Турă пачĕ пире кĕсел çиме, çиер-ха!» Çавăнта ларакан кӳршĕ çынни каланă: «Турă парасса пачĕ кăна, Пӳлĕхçĕ пӳрмесен çак кĕсел сан çăварна кĕмĕ». Ăна хирĕç хуçи каланă: «Епле кĕмĕ? Кĕселе сĕтел çине лартнă, акă ларатпăр сĕтел хушшине, илетпĕр кашăксем, тытăнатпăр çиме». Çак сăмахсене каласа вăл сĕтел хушшине ларнă. Çав хуçа кашăк илсенех пĕри чӳречерен килсе шакканă та кăшкăрса янă хуçа лаши çырмара кĕлерет тесе. Хуçи пăрахнă кашăкне, чупса кайнă лаши патне çырмана, пит нумай вăхăтирттерсе янă лаши панче. Çав вăхăтра килтисем мĕнпур кĕселне çисе янă. Хуçи тутанса та пăхайман çав кĕселе. Акă епле пĕлтерет чăвашсене Пӳлĕхçĕ.

## 158

Хĕвел тĕттĕмленме пуçласан Пӳлĕхçе пуççапнă:

«Çырлах, ыр Пӳлĕхçĕ, пур тĕлтен те эсĕ усра, сыхла, çилтен-тăвăлтан сыхла, усал çумăрĕнчен-пăрĕнчен те сыхла, çырлах. Сана ăшă хăпартупа асăнатăп. Ман кĕллĕме хапăл ту, çырлах».

## 159

Пĕрре Торăпа Пӳлĕçси праçник конĕ тĕнчери çынсем мĕнле порăннине пăхса çӳреме тохрĕç тет. Пырсан-пырсан пĕр арăм кĕпе çунине корчĕç тет. Пӳлĕçси: «Вăй патăр сана!» — терĕ тет. Торă пĕр сăмах та чĕнмесĕр иртсе кайрĕ тет. Тата тепĕртак кайсан пĕр качча кайман хĕр: «Ах, Торă!» — тесе йĕре-йĕре çĕр айне ача пытарнине корнă тет. Торă: «Пит вилес пекех ан тарăх, ачам», — тесе каларĕ тет. Çав хĕртен пăртак иртсе кайсан Пӳлĕçси Торра: «Мĕншĕн эсĕ çак аскăн хĕре çавăн пирки йăпатса сăмах каларăн, пасăрхи ĕçлекен арăма пĕр сăмах та чĕнмерĕн?» — тесе каларĕ тет. Торă каларĕ тет: «Паçăрхи арăм мана хисеплемесĕр пăраçник конĕ кĕпе çăвать, ко хĕр аскăн ĕç тонă полсан та кашни сăмахра «ах, Торă» тесе мана тархасласа чĕнет, çавăнпа эпĕ леш арăма сăмах та чĕнмерĕм, ко хĕре сăмах каласа йăпатрăм», — тесе каларĕ тет.

## 160

Пĕр хĕрарăм мунчара ача çуратнă тет. Ачине лапка çине хунă та хăй сак çине канма выртнă. Кĕçех иккĕн калаçни илтĕнсе кайрĕ тет. Пĕр ангелĕ пы-ысăк кĕнеке тытнă тет те тепринчен ыйтать тет: «Ну, ку ачан шăпине мĕнле тăвăпăр?» Тепри калать тет: «Вунă çул тултарнă кунхине шыва путса вилмелле пултăр тесе çырса хур». Çапла çырса хучĕ тет тепри. Ача амăшĕ кусем мĕн калаçнине пĕтĕмпех илтнĕ тет.

Çапла вунă çул тултарнă каç çитрĕ тет хайхи ачан. Ачи амăшне иртенпех йĕрĕнтерме пуçларĕ тет шыва кĕрес килет тесе. Амăшĕ вара ачине пӳрте хупса питĕрсе илчĕ тет алăккине. Хăйĕн пуçĕнчен шухăш сĕвĕрĕлме пĕлмерĕ тет паян ачи вилмелли кун иккенне. Каçхине кăна алăкне уçса кĕрсе пăхрĕ тет вăл. Анчах пур çĕрте те шырасан та ачине ниçта та тупаймарĕ тет, вăл юлашкинчен кăмака хыçĕнче ларакан шыв тултарнă каткана пырса пăхрĕ тет. Унăн юратнă ачи каткара ним хускалмасăр пуç хĕрлĕн выртнине курсан вăл ӳлесех макăрса ячĕ тет. Çапла вара ачана шывра путарса вĕлерес мар тесен те ачи пурпĕрех темле майпа каткари шыва кайса вилнĕ. Ачине вара ирĕксĕрех çăва çине кайса пытарчĕ тет.

## Пихампар

*Пихампар — Аслă Турă умĕнче тăракан, çынсене шăпа уйăрса паракан турă. Вăл выльăх-чĕрлĕх турри те, тискер кайăксен (Кашкăрсен) пуçлăхĕ те. Кашкăр мĕн çимеллине Пихампартан ыйтать, лешĕ — Турăран.*

*Пихампара Карта турри теççĕ. Ăна чăваш çынни выльăх-чĕрлĕх ан чирлетĕр, лайăх ĕрчетĕр тесе кĕлтăвать.*

### 161

Турăсенчен пĕри Пихампар пулнă. Унăн ĕçĕ этемсене тата выльăх-чĕрлĕхсене сиен тăвакан кайăксенчен тата урăх чĕр чунсенчен сыхласси пулнă. Пихампар вăл пĕлĕт çинче пурăннă. Анчах хутра-ситре вăл çӳлтен анса аллине туя илсе ватах та мар, çамрăках та мар арçын пулса çĕр çинче çӳренĕ.

### 162

Турă умĕнчи Пӳлĕхçе пăхăнса-парăнса тăраканнисенчен иккĕмĕшĕ Пихампар ятлă пулнă. Ку Пихампар та, леш Кепе пекех, Пӳлĕхçĕ хăне мĕн тума хушнине итлесе-туса пурăннă. Унăн ĕçĕсем, Кепе ĕçĕсем пек, телейсем валеçесси пулман, хăне урăх тĕрлĕ ĕçсем пулнă, чун-мĕн çуралсанах ăна ăс панă, çынсене тата унсăрăн пуçне кăмăлпа хастар та панă, апла-капла ӳлĕмрен мĕн пулассине, мĕн курассине малтанах пĕлсе тăрса ытти пĕлменнисене каласа парса пĕлтернĕ.

### 163

Пихампар — карта турри. Пихампара ытларах выльăх-чĕрлĕх вилсен е чирлесен кĕлтунă: «Эй, выльăхсен ырă турри Пихампар! Пире йывăрлăхран хăтар, ачасен сывлăхĕшĕн те пулин выльăхсене вилме ан пар», — тенĕ. Пихампара çынсем йĕре-йĕре пуççапнă, мĕншĕн тесен выльăх-чĕрлĕх пымасан вĕсем вилме пултарнă çиме ним çуккипе.

### 164

Пăланăн кашнăй çул пĕр мыряка хутшăнать тет, вăл ĕлĕк Пихампарăн ĕни пулнă тет. Луç унăн усрав выльăххи пулнă тет. Кашкăр унăн йытти пулнă, тилĕ унăн кушакки пулнă тет. Ăсан унăн чăххи, кайăк-кăвакал ун кăвакалĕ пулнă, хур кайăк унăн хурĕ пулнă. Мĕнпур çавăн пек кайăксем пурте Пихампарăн пулнă теççĕ. Пирĕн чăваш уйра кашкăр курсан вара сăхсăхать: «Ырă Пихампар, йăттăна чар», — тет.

### 165

Пихампар килти выльăх-чĕрлĕхе тискер кайăксенчен сыхлать тет. Унсăр пуçне тата вутăпа хуçа тет.

### 166

Пихампар — кашкăрсене пăхаканĕ. Ăна кашкăрсене асăрхаса тăма аслă Турă хушнă; кашкăрсем пурте унăн йыттисем шутланаççĕ. Чăвашсем Пихампара чӳк параççĕ, вăл кашкăрсене выльăх-чĕрлĕхе тĕллевсĕр тустарасран сыхлатăр теççĕ.

## 167

Кашкăрсене пăхса тăракан Пихампар çав вăхăтрах килти хуçалăха та хăш-пĕр енчен сыхласа пурнаканĕ шутланать. Вăл кашкăр евĕр теççĕ, анчах кашкăрсенчен вăйлăрах та пысăкрах. Вăл шурă çăмлă. Пихампар кашкăрсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнччăр тесе тăрăшать, вĕсен кашни кун мĕн тытса çимеллине палăртса парать. Пихампар нихçан та пĕччен çӳремест, ун тавра яланах пĕр çирĕмрен кая мар кашкăр çӳрет. Пуçлăхĕпе пĕрле чухне кашкăрсем никама та, уйрăмах çынсене, тивмеççĕ.

## 168

Пĕр сунарçăн йытти кашкăр тытма пултарнă. Пĕринче çак çын хăйĕн йыттипе сунара кайнă. Нумай çӳренĕ вăл, анчах нимĕн те тупайман. Юлашкинчен кашкăр кĕтĕвĕн йĕрне асăрханă. Çав йĕрпе вăл вăрман уçланкине пырса тухнă. Уçланкăра ватă çын ларнине, ун тавра кашкăрсем йытăсем пек выртса тухнине курнă. Сунарçă мĕн тумаллине те пĕлмен. Ватти ăна хăй патне чĕнсе илнĕ те ыйтнă: «Кашкăрсене тытакан йытă-и çакă?» Сунарçă çапла тесе хуравланă. Вара ватă карт сунарçа хăйĕн йыттине пĕр пысăк кашкăр çине вĕслетме сĕнет. Йытă кашкăра çурса тăкать. Ватти сĕннипе сунарçă йытта тепĕр кашкăр çине ярать. Ку хутĕнче кашкăр йытта çурса тăкать.

Кунтан тухса каяймăп тесе хăрама пуçлать сунарçă. Карт ăна кăларса ярать, анчах малашне кашкăр кĕтĕвĕн йĕрĕпе çӳреме хушмасть, мĕншĕн тесен кĕтӳре кашкăрсен хуçи пулма пултарать.

Кĕтӳрен татăлса юлнă пĕччен кашкăрсене тытма чармасть, мĕншĕн тесен вĕсем хуçинчен уйрăлса кайнăскерсем.

Çав ватă карт Пихампар хăй пулнă.

## 169

Пĕр çын пасара пичкесем сутма кайнă. Хĕлле пулнă. Пасар çулĕ вара вăрман патĕнчен иртсе кайнă. Сасартăк вăрмантан пĕр кĕтӳ кашкăр тухать. Вĕсем лаша çулне пӳлсе хураççĕ. Шăлĕсене шатăртаттарса, куçĕсене йăлкăштарса лашана халь-халь çурса пăрахасла пăхса тăраççĕ. Çаксем хушшинче старик пĕр шурă кашкăра курать. Çав кашкăра чăвашсем Пихампар теççĕ. Старик калать: «Пихампар, лашусене чар», — тесе, вара çак Пихампар кашкăрсене хăвала-хăвала вăрмана кĕртсе ячĕ тет.

## 170

Кашкăр хăйне çиме Пихампартан ыйтать, лешĕ — Турăран. Турри калать: «Çав карчăкăн пĕртен-пĕр сурăхне çитĕр», — тет. Пихампарĕ ку сăмаха калама аптăраса тăрать. Пĕр Турă хушнине каламах лекет унăн. Вара кашкăрĕ хай сурăха тытса çиет.

## 171

Пĕррехинче тутарсем лаша вăрласа каяççĕ тет. Çакна чăвашсем курнă тет. Пихампар чăвашсем патне пырать те ыйтать. Чăвашсем курмана переççĕ. Улталанăшăн Пихампар чăвашсене типĕ тытмалла тăвать тет. Тутара

вăрланăшăн: «Хăвăнне ху вăрласа çимелле пултăр», — тесе каланă пулать. Çавăнтан вара тутарсем çутăличчен, хĕвел çути тухиччен, пĕçерсе çиеççĕ те кунĕпе çӳреççĕ тет. Ураса тытаççĕ.

## Кепе

*Кепе турă — Мăн Турра пулăшаканĕ, ăна ытти турăсемпе, сыхчисемпе çыхăнтарса тăраканĕ. Кепе — кааба, араб чĕлхинчен кĕнĕ сăмах, «пĕлĕт» тени пулать. Пӳлĕхçи, Пихампар, Пирĕшти Мăн Турă хушнине çĕр çинче Кепе урлă туса пыраççĕ. Кепе— Пирĕштисен пуçлăхĕ,Пĕлĕтпе Çĕр хушшинче пурăнать, Турăпа этем хушшинчи çыхăнăва йĕркелесе тăрать. Турă çынсем патне мĕн те пулин ыйтма килсен ярас тет пулсан çав ырлăха вĕсем патне Кепе çитерет. Вăлах кĕлĕпе ыйтнă çынсен ыйтăвĕсене Турă патне çитерет. Çакна кĕлĕри сăмахсем аван кăтартса пара ççĕ («Пиртен Кепене, Кеперен Турра çиттĕр»). В.К.Магницкий кĕнекинче пĕр кĕлĕре Кепе туррăн ашшĕ, амăшĕ пуррине илсе кăтартнă, вĕсемсĕр пуçне Кепе умĕнче çӳрекен турă тесе Пӳлĕхçе асăннă, Кепе турă сывлăшлă ытти турăсене Кепе хаярĕ, Кепе инкекĕ, Кепе синкерĕ, Кепе-ту ятсемпе палăртнă.*

### 172

Кепе — пурне те çураçтаракан хăват. Кепе ыттисене пĕрлештерсе тăрать. Çулталăкри чӳкре мĕнпур хăватсене хисеп туса тухнă хыççăн Кепене чыслаççĕ. Ăна чăваш халăхне мĕнпур ытти хăватсемпе, турăсемпе, ырăсемпе килĕшӳллĕ пурăнмалла тума тата мĕн панине çырлахтарма ыйтаççĕ.

Кепе, çапла вара, çынсемпе хăватсем хушшинчи вăй, ăна çав ĕçе лайăх туса пынăшăн чӳк параççĕ.

### 173

Пӳлĕхçĕ умĕнче пурăнаканнисенчен чи асли Кепе пулнă. Çавăнпа Пӳлĕхçĕ хăй мĕн тăвас тенĕ шухăшне Турă хушнă пирки шухăшласа пĕтерсен, туса пĕтерме кирек хăçан та хăй умĕнче парăнса пурăнаканнисенчен чи аслине Кепене каласа панă. Вăл вара хăйне çапла тума хушса каласа, çта çитнĕ унта туса çӳренĕ; кама ырă пурăнăç пама хушнине, ăна вара парсан, мĕн тума хушнине итлесе ырă пурăнăç панă, кама та кама тата усал пурăнăç пама хушнă, ăна вара усаллине панă. Вăлах хăшне Пӳлĕхçĕ Турă хушнă пирки пуйма çырнă, ăна вара темĕн тĕрлĕ пуйтарнă, пĕтерме çырнине чисти пĕтернĕ... Çапла чунсене ырăпа усал пурăнăçсем парса пурăннă пирки унăн ятне Кепе тенĕ.

### 174

Кепе — çĕрпе шыва тытан хăват. Унăн хăвачĕ хĕвел тухнă енче. Кепе тăлăх карчăк пулнă. Нумай курнă, нумай чăтнă вăл, çынсене пулăшса пурăннă, ача-пăчана ăс панă, ĕç тĕлне вĕрентнĕ. Ырă туни çĕре ӳкмен. Карчăкран турра тухнă. Кепе пурăннă вырăна Кепе-ту тенĕ.

Кепе вăл анне, аннӳне ан хирĕçтер, аннӳ сăмахĕ — Кепе сăмахĕ, вăл çĕре ӳкмест. Ашшĕ-амăшĕ Кепе ячĕпе ачи-пăчине ылханса каласан этемĕн ырă курасси пулмасть.

Кепе туррăн хăйĕн йышĕ пур. Кепе амăшне вĕлле хурчĕ усракансем кĕлĕ тăваççĕ:

«Кепе туррӑн амӑшӗ! Мана пулӑш пар, хӑвӑн чипер кайӑкна пуҫтарса, пулӑшса пыр мана, Кепе турӑ амӑшӗ». Вара Кепе амӑшне пӗр мӑшӑр ҫӑртан* тата пӑтӑ параҫҫӗ.

«Кепе, алӑк умӗнче тӑракан ырӑ! Кӑвак хуппи уҫӑлнӑ чухне вӑхӑтра вӑранса, ырлӑх паракан хӑватсене вӑхӑтра кӑлар. Халӑха ырлӑх пар, тӑшмана хурлӑх яр».

Кепе турра карта пӑттинче асӑнаҫҫӗ. Ятарласа хирте чӳк тӑваҫҫӗ. Хӗвел тухӑҫнелле пӑхса калаҫҫӗ:

— Ҫӗр-шу тытан Кепе, ҫырлах! Сана кӗлтӑватпӑр ир тӑрсан та, каҫ выртсан та. Кепе ырӑ, паян сана пӑтӑпа тав тӑватпӑр, тыр-пул пухса кӗртсен, выльӑх-чӗрлӗхе картана хупсан шурӑ юр тӑрӑх хур-кӑвакал парӑпӑр.

Кепене хур кӗллинче халӑхпа чӳк тӑваҫҫӗ:

— Сана, Кепе, хур кӗлли. Ял-йышпа хур парса чӳк тӑватпӑр. Таса Турӑ ҫырлах! Кепе, сана хур тӑвап, йывӑр сӑмах хыҫӗнчен таса Кепене пӗтӗм йышпа хур тӑвап. Чун татса юн тӑкатӑп. Кепе хурӗ тӑватӑп. Ырӑ чӳкӗм, ҫырлах.

Кепе амӑшне пӗр пӑтӑ парап. Кепе амӑшне пӑттӑм ҫырлах.

Икӗ Кепе умӗнче тӑракан Ырра пӗр юсман паратӑп. Чӳк ҫырлах.

Кепе умӗнче ҫӳрене тепӗр юсман.

Кепе умӗнчен килекен ырра юсман. Кепе чӳкӗм ҫырлах.

Таса Кепе хурӑм чӳкӗ ҫырлах.

Аслӑ Кепе-хӑрпан! Тупа туса каланисене асра тытӑр. Ҫӗр ҫыртса тупа туни шывпа юхса каймӗ. Сирӗн аслӑ хӑват умӗнче чӳк туса сӑмах тататпӑр.

## 175

Ҫав Мӑрка ҫинчен ватӑ ҫынсем ак ҫапла калаҫҫӗ. Пӗрре вӑл Кепе киреметре тӳрлетме кайнӑ тет. Пырсассӑн, пӗтӗм хатӗрлесе ҫитерсен ак ҫапла каланӑ тет: «Эй, Кепе, мӗн чухлӗ эпӗ сана парне паратӑп, анчах пӗлместӗп — эсӗ чӑн-чӑнах пур-и, ҫук-и? Чӑнах ҫакӑнта пурӑнатӑн пулсассӑн мана курӑн»,— тенӗ тет. Вара уҥ умне хӗрлӗ чаршав карӑнса тӑчӗ тет те, аял енчен симӗс пушмак пуҫӗ курӑнчӗ тет. Ҫавна курсан Мӑрки пит хӗпӗртесе килне таврӑннӑ. Халь ҫавна илтнӗ чӑвашсем пурте киреметсем пуррине ӗненеҫҫӗ. Анчах: «Ӑҫта халь киреметсем?» — тесессӗн ватӑ ҫынсем ак ҫапла калаҫҫӗ: «Ревис чухне хирсене сӑнчӑрпа виҫрӗҫ, ҫавӑн чухне киреметсем, йӗрӗхсем, арҫурисем сӑнчӑртан хӑраса Атӑл урлӑ Йӑлӑма тарнӑ», — теҫҫӗ.

## 176

Чӑвашсен тӗнче тытакан торри Кепе ятлӑ пулнӑ тет. Кепе турра асӑнса виҫӗ ҫулта пӗрре ҫын вӗлерсе чӳк тунӑ тет. Каярахпа, халӗ эп астӑвасса, ҫын вырӑнне мӑкӑр пусса сӑра чӳк тӑватчӗҫ. Маларах лаша пусса чӳк тӑватчӗҫ тет.

Кепе киремечӗ хыҫалти олӑхра, Тӑватпӳрте кайнӑ ҫӗрте — Яманакран кайнӑ чух сылтӑмра, айлӑмра, хорамасем патӗнче.

Ӗлӗк Кепе торра парне памашкӑн кашни ҫынах вилесшӗн пулнӑ. Кама шӑпа тохнӑ, хӑйне торӑ патне каяп, райра юлап тесе савӑннӑ тет.

* Шӑрттан.

## Пирĕшти

*Пирĕшти сăмах «пир ăсти» тенинчен пулса кайнă тесе калаççĕ. Ку тĕрĕсех пулма пултарать, мĕншĕн тесен Пирĕшти шурă тумлă илемлĕ хĕр сăнарĕпе çӳрет, вăл çĕрлесерен, çынсем çывăрнă чухне этем пурнăçĕн пирне (сурпанне) тĕртет. Вырăсла вăл «ангел» пĕлтерĕшпе, персла «фереште», узбекла «фаришта», туркменла «периште», турккăлла «ферипте» сăмахсемпе çӳрет.*

*Пирĕшти (Пирĕште) — кил-çурт сыхлакан ырă. Вăл çын чунне, кил-йыша, пӳрт-çурта сыхлать. Пирĕшти кашни килтех пулать. Пирĕшти те, Пихампар пекех, Пӳлĕх умĕнче тăрать. (Эй, ырă пирĕштисем, чун сыхлаканнисем, пĕв сыхлаканнисем, эсир пиртен усала сирĕр!— кĕлĕ сăмахĕсенчен.) Вăл çынна усал-тĕселрен сыхласа çӳренĕрен ăна тата Упраканĕ те теççĕ.*

*Пирĕшти чăваш мифологийĕнче тĕрлĕ ĕçпе палăрса юлнă. Пĕри — çĕр çинчи, этем кил-йышĕпе пурăнакан, этем чунне сыхлакан, кил-çурта тытса тăракан; тепри этеме, выльăх-чĕрлĕхе сывлăхра упракан. Вăл чун евĕрлĕ, кашни çын ăшĕнче пурăнакан шульăш. Этем вилнĕ чухне малтан ун ăшĕнчен Пирĕштийĕ тухать те çӳлти Турă патне каять. Е тата этем пуласлăхне, вăл ку ĕçе лайăх çыраканĕ сылтăм хулпуççи çинче, усал çыраканĕ сулахай хулпуççи çинче ларать теççĕ.*

*Килти выльăх-чĕрлĕхе пăхакан Пирĕшти ват çын тĕслĕ. Вăл уйрăмах хăй тĕслĕ лашана пăхать. Çапла вара, Пирĕшти кил таврашĕнче шурă тумланнă хитре хĕр, шур сухаллă ватă çын, пĕчĕк хĕр ача сăнарĕпе курăнать. Кашни çыннăн хăйĕн Пирĕштийĕ пур, вăл этемпе Турă хушшинчи çыхăнăва тытса тăрать. Çак ĕненӳпе Пирĕшти пĕлĕт çинче Кепепе, Пӳлĕхпе пĕрле Аслă Турă умĕнче çӳрекен Ырă пулса тухать. XIX ĕмĕрте пичетленнĕ тĕн литературинче ангела чăвашла Пирĕшти тесе куçарнă.*

*Пирĕшти çинчен калакан халапсен ытларахăшĕ кил-çурта таса тытма пулăшни, усал-тĕселтен сыхлани çинчен калаççĕ, вĕсен сюжечĕсем, тĕпрен илсен, Хĕртсурт çинчен калакан халапсен сюжечĕсемпе пĕрешкел.*

### 177

Пӳлĕхçĕ хыççăн чăвашсен тепĕр ырă — Пирĕшти тăрать, вăл этеме инкек-синкекрен упрать. Кашни çын çумĕнчех пĕр Пирĕшти пур. Вăл çын ăшĕнче вырнаçнă. Çын çăварне карса çывăрать пулсан, унăн Пирĕштийĕ Турă патне тухнă теççĕ. Тепĕр чухне вăл çăвартан пĕчĕк, таса, шурă чĕрĕ чун пулса тухни курăнать теççĕ. Кĕçех каялла таврăнать, вара çын çăварне хупать.

Çавăнпа çăварне уçса çывăракан çынна чăвашсем тӳрех вăратмаççĕ, малтан аякранах ят каласа чĕнеççĕ. Эппин, Пирĕштие каялла таврăнма вăхăт параççĕ.

### 178

Пĕринче пиччĕшĕпе шăллĕ кĕтӳ кĕтнĕ. Вĕсенчен пĕри çĕр çине выртнă та хытă çывăрса кайнă. Тепри вăл вăхăтра кĕтӳне çӳрет. Кĕçех пиччĕшĕ пырать те çывăракан шăллĕ умне ун çăварĕ патне темле пĕчĕк те шурă чĕр чун васканине курах каять. Пиччĕшĕ шăллĕн тути çине хăйĕн юман пушă авăрне хурать. Вара пĕчĕк чун çывăракан çын тути-çăварĕ тавра чупкалама пуçланă, анчах çăвара кĕреймен. Пиччĕшĕ юлашкинчен юман авăра илнĕ те, чĕр чун çăвара кĕрсе çухалнă. Çывăракан çын çавăнтах вăранса

кайнă та каланă: «Ах, тĕлĕкре эпĕ питĕ асапланса пĕтрĕм! Вăрманпа пыратăп пек, ман умра пысăк юман вулли выртать пек, эпĕ ун урлă ниепле те каçаймастăп. Çав йывăç мана йăлтах тертлентерсе пĕтерчĕ». Каланине илтсен пиччĕшĕ ăнланнă: ку чĕрĕ чун шăллĕн Пирĕштийĕ пулнă иккен.

Пирĕшти этемпе мунчана кăна каймасть теççĕ чăвашсем. Вăл вĕри пăсран хăрать, çавăнпа мунча алăкĕ хыçĕнче тăрса юлать, вара хăйĕн çынни тухасса чăтăмсăррăн кĕтет, пиçсе ан кайтăр тесе хурланса йĕрет иккен.

Тепĕр чухне Пирĕштие çын вилес умĕн курма пулать. Çын вилес умĕн унăн чунĕ тухиччен малтан ăшран Пирĕшти тухать те Турă патне яланлăха каять. Вара тин этем чунĕ тухать.

## 179

Пирĕште лайăх калаçнине лайăх çырать, усал калаçнине усал çырать. Никĕш те куракан çук, только хулпуççинче ларать тесе калаççĕ, лайăх çыраканни сылтăм хулпуççинче, усал çыраканни сулахай хулпуççи çинче ларать.

## 180

Пирĕшти тесе сыхлакан Ангела каланă. Вăл кунĕпе çылăх, сăвап тунине çырса пырать, каçпа Турра евит тума каять тенĕ. Каçпа сас инçе каять, çавăнпа та çул çинче пулсан илтен тенĕ. Хальхи шухăшпа мар — ĕлĕкхи шухăшпа. Унтан таврăнсан çĕрле мĕн çылăх тăвать, ăна ирхине кайса евит тăвать тенĕ.

## 181

Выльăх-чĕрлĕхе упракан турăсем хушшинче выльăхсене, тискер чĕр чунсене тата уйрăм ытти чĕрлĕхе пăхса тăракан турăсем пур. Пирĕшти лашасене, Пихампар кашкăрсене пăхаççĕ.

Пирĕштие пĕрисем пуçĕнчен ури тупанĕ таранах çăмламас ватă çын теççĕ. Вăл лашасене пăхать, тăрантарать, ачашлать, тасатать, хырчăклать, çилхисене çивĕтлесе ярать тата ытти те. Пирĕшти пур лашана та юратать темеççĕ. Вăл хăй тĕслисене кăна уйăрса илет. Витере тĕрлĕ тĕслĕ лашасем тăраççĕ пулсан, Пирĕшти пĕтĕм апата ыттисенчен туртса илет те хăй тĕслĕ утсене хурса парать. Урăх тĕслисене пĕр шеллемесĕр хĕнесе пĕтерет. Лешсем хăраса кĕтесе, сырăш хыçне кĕпĕрленсе хĕсĕнеççĕ.

Пирĕштисем кирек мĕнле ут витинче те пурăнаççĕ. Пирĕштисĕр ут вити çук.

## 182

Хăшĕ калаç, Пирĕшти вăл çырмари Шуйттан теç, çынна хăй патне улталаса илĕртет теç. Хăшĕ — Пирĕшти Хĕртсуртпа пĕр сăмахах теç.

## 183

Пирĕшти вăл кашни çуртра пулать теççĕ. Вăл Пирĕшти кăмака çинче пурăнать теççĕ. Пирĕштине тата чӳклеççĕ çулталăкра пĕрре анчах. Пăттине каçран чӳклеççĕ те кăмака çине ларта ççĕ кашăксем хурса.

## 184

Турӑ умӗнче Пӳлӗхҫе пӑхӑнса-парӑнса тӑраканнисенчен виҫҫӗмӗшӗ — Пирӗшти пулнӑ. Пирӗшти те, Пихампар пек, Пӳлӗхҫӗ умӗнче ялан хӑна мӗн тума хушнине итлесе туса пурӑннӑ. Унӑн ӗҫӗсем тата хӑне тепӗр тӗрлӗ пулнӑ. Турӑ чун ҫуратсанах Пӳлӗхҫӗ хушнӑ пирки вӑл ҫав ҫынна ӗмӗрӗ иртиччен пур усалсенчен те сыхласа ҫӳренӗ. Ҫылӑха-мӗне кӗрсен ҫын ҫылӑхне часах хӑнчен аслине Пӳлӗхҫӗ Турра каласа панӑ. Ҫапла ҫынна усраса ҫӳренӗрен ӑнах тата Упраканӗ те тесе чӗнеҫҫӗ.

## 185

Турӑ япала ҫухалнипе аптранӑ тет. Пӗрмаях кил-ҫурт таврашӗнчи япаласем, савӑт-сапасем ҫухалаҫҫӗ. Пӗрре ҫапла Турӑ ҫӳҫеллӗ тутӑр илет те шывлӑ кӗленче ҫине ҫапать тет. Шывӗ Турӑ амӑшӗн ҫылӑх каҫарттармалли шыв пулнӑ тет. «Япалана тупса пар, япалана тупса пар», — тесе ҫапать тет кӗленчине.

Таса шыв кӗленчине ҫапнӑ хыҫҫӑн япаласене вӑрлаканни питӗ хытӑ чирлесе ӳкет тет. Асапланса пурнать-пурнать те юмӑҫ карчӑк патне каять тет. Лешӗ ӑна ҫын япалине хапсӑннӑ тесе куҫранах калать тет. Вара вӑрлакан ҫын пӗтӗм вӑрланӑ япалине шӑрпӑк коробки ӑшне чиксе килсе парать тет. Турӑ: «Манӑн япала кун чухлӗ кӑна ҫухалман, веҫех килсе пар», — тесе ку ҫынна хуса кӑларса ярать. Лешӗ тертленсе пурӑнать-пурӑнать, ҫавах усси ҫук. Тепре кайса пӑхма шухӑшлать Турӑ патне. Хальхинче мӗнпур пек япалине хӑйӗнчен пысӑк хутаҫа хурса кайса парать тет. Турӑ кӑна йышӑнать. «Ку япаласене кам тупса пачӗ?» — тесен, леш ҫын: «Ҫурт хуҫи тупса пачӗ», — тенӗ тет. Ҫурт хуҫи Пирӗшти тет. Ҫапла вара Пирӗштине яланлӑхах ҫурт хуҫи туса хучӗ тет.

Ваттисем каланӑ тӑрӑх, халӗ кашни ҫуртрах Пирӗшти пурӑнать. Вӑл кил-ҫурт хуҫи пулса тӑрать тет.

## 186

Чӑваш хайлалӑхӗнче пирӗштисем йышлӑ. Тӳпере вӗсем Турӑ умӗнче ҫӳреҫҫӗ, ҫавӑнпа «Турӑ умӗнче ҫӳрекен» теҫҫӗ.

Ҫӗр ҫинче кашни ҫыннӑн хӑйӗн Пирӗштийӗ пур. Вӑл яланах ун хыҫҫӑн ҫӳрет, алӑк патӗнче кӗтсе илет. Ҫавӑнпа хупахран-мӗнрен тухнӑ чухне малтан кӗнӗ алӑкранах тухас пулать, унсӑрӑн Пирӗшти ҫынна куҫран ҫухатать. Вара вӑл ҫынна тупиччен йӗре-йӗре шыраса ҫӳрет.

Пирӗшти ҫынпа пӗрлех ҫӳрет пулсан та ӑна никам та нихӑҫан та курма пултараймасть.

## 187

Пирӗшти — ҫурт сыхлакан ырӑ вӑй. Ҫын пасара е ӗҫе кайсан ҫурта питӗрмесӗр хӑварать, пӳрт-ҫурта Пирӗшти сыхлать тет.

Пирӗшти — ырӑ хӑват. Анкӗл. Ҫын чунне, пӳрте, кил-йыша сыхлакан, пӑхакан Турӑ.

## 188

Пирӗшти ангел тет у. Пӗррехинче пирӗн аннесем кӳршӗ яла ӗҫме кайнӑччӗ. Эпир килте пӗчӗккисем анчах юлнӑ. Манӑн йӑмӑксем ҫывӑрса кайнӑччӗ. Эпӗ вырӑн патне пытӑм та ҫывӑрма выртас тесе тӑратӑп, кра-

вать патĕнче пукан çинче вăрăм çӳçлĕ хĕр ларнине курах карйăм. Эпĕ хăра-хăра йăмăксем çумне вырăн çине кĕрсе выртрăм.

Тепĕр кунне аннесене каласа паратпăр та, анне пире: «Вăл Пирĕшти пулнă, сире сыхланă», — терĕ.

## 189

Пĕр каçхине Çерук аппа вун ик сехетсенче вăранса кайнă тет. Пӳртре шăп çеç. Çав вăхăтра шăнкăр-р, шăнкăр-р! туни илтĕнсе кайнă. Куçне уçса пăхрĕ тет те шап-шур тăхăннă хĕр евĕрлĕ Пирĕштие курчĕ тет. Вăл вырăн çинче кĕнчеле авăрласа ларать тет.

Пирĕштисем кил-çурта усалсенчен сыхлаççĕ, лайăх хуçа килĕнче çеç пурăнаççĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕхе те пăхаççĕ. Вĕсем пăхсан вара выльăхсем те лайăх, чĕрĕ пулаççĕ.

## 190

Пирĕштие киле-çурта сыхлакан Хĕртсурт теççĕ пирĕн таврара. Ăна кӳрентерме юрамасть, кӳрентерсессĕн вăл кил-çуртран тухса каять, вара мĕнле те пулин инкек пулать.

Хăнана-мĕне кайнă чух килте никам та юлмасть пулин те «Чипер юл» е «Кил-çурта лайăх сыхла» тесе хăвараççĕ. Хăнаран таврăннă чух вара, пӳрте кĕрсессĕн «тавсье» теççĕ. Капла вĕсем пирĕштисене калаççĕ.

## 191

Пирĕшти çуртра пурăнать тет, ăна усалтан сыхлать тет. Харкашса, вăрçса пурăнакан çынсен çуртĕнчен Пирĕшти йĕрсе тухса тарать тет. Çав çемье ĕмĕрне ыр курмасть тет.

## 192

Çурта пĕччен хăварсан пирĕштисем йĕреççĕ тени тĕрĕс çав вăл. Ĕлĕк çапла Якрав пиччесем çуртне хупсах таçта тухса кайнăччĕ. Вара çав Якрав çуртĕнче шавах йĕнĕ сасă илтĕнетчĕ. Çап-çамрăк хĕр ача сасси пек ачаш сасăллăччĕ:

— Эй, хуçамăр кайрĕ, хуçамăр кайрĕ, — тесе йĕретчĕ.

Пĕчĕкçеççĕ хĕр ачасем вĕсем, шап-шур тумпала. Хуçи лайăх, ырă пулсан Пирĕшти яланах çурта пулăшать. Шăнкăр-шăнкăр! Йăнкăр-йăнкăр! тутарса кĕнчеле авăрласа ларнине хам та темиçе илтнĕ.

## 193

Пирĕшти — çурт сыхлакан ырă вăй (турă хăвачĕ). Çын пасара е ĕçе кайнă чухне çурта питĕрмесĕрех пăрахса хăварать, пӳрт-çурта Пирĕшти сыхлать тет.

Çапла пĕррехинче Ерехви Ваççукĕсем Çĕпĕре куçса каяççĕ. Арăмĕ кăмака патне пычĕ те:

— Эй, ырă Пирĕштийĕм, çурт сыхлакан. Атя пĕрле, атя пирĕнпе çĕнĕ çĕре. Хуçусем çĕнĕ çĕре куçса каяççĕ. Ан юл пирĕнтен. Çĕнĕ çĕрте çĕнĕ çурт лартăпăр, эсĕ унта та çурт сыхлăн. Атя, ырă Пирĕшти, атя, — тесе çăкăр касакан çĕçĕпе кăмака тăмне ывăçĕ çине хырса пуçтарчĕ. Çав шур тăма укçа хутаççине чикрĕ, туртса çыхрĕ, кĕпи аркинчи кĕсйине чикрĕ.

Вара вĕсем лаша урапи çине ларса Патăрьел еннелле кайрĕç. Хăйсем макăраççĕ. Ваççукĕ çеç йĕмест.

— Чарăн, арăм, — тесе пырать.

194

Ĕлĕк Пирĕшти çип пĕтĕрсе ларнă тет. Пĕтĕрни илтĕнет тет, хăй курăнмасть тет куçа. Пĕр-р! пĕр-р! пĕтĕрсе ларни илтĕнет тет. Пирĕшти каçпа хăш чухне йĕрет тет. Пирĕшти йĕрсен çуртра темĕскерле хуйхă пуласса тет.

«Çĕнĕ пӳрт лартсан Пирĕштие кив çуртран унта куçармалла тет. Кăмака кирпĕчне кăларса ун валли вырăн туса хумалла, — тесе калатчĕ кукамай. — Пирĕштие кӳрентерсен пурнăç пулмас вара», — тетчĕ.

195

Пĕррехинче пĕрисем кӳршĕ яла куçса каяççĕ тет. Çурма çула çитсессĕн кусен лав урапи çĕмĕрĕлчĕ тет. Тӳрлетсен малалла кайма тытăнчĕç тет, лаша сӳсменĕ татăлчĕ тет. Ниçтан та малалла каяймаççĕ тет. Кил хуçи хĕрарăмĕ аса илчĕ тет: «Эпир Пирĕштине чĕнме маннă!» — терĕ тет. Вара килне каялла кайса: «Атя, Пирĕшти, пирĕнпе», — терĕ тет. Вара, чĕннĕ хыççăн, лавпа нимĕнле инкек те пулмарĕ тет. Çитес çĕре чиперех çитнĕ тет.

196

Çуртра Пирĕшти пулнă тетчĕç ĕлĕкех. Кил сыхлаканĕ пулнă. Авăрлама тытăнсан кăнчалине хăвармалла тетчĕç. Вара Пирĕшти авăрласа тултарать теççĕ. Хăвармасан йĕреччĕ тет. Хăй йĕкине пĕлтĕр! пĕлтĕр! тутараччĕ тет.

197

Пирĕн кӳршĕ тăлăх хĕрарăмччĕ, ачисем вара нумайччĕ. Вĕсем патне çĕр выртма кайсассăн çĕрле вăранас пулсассăн яланах çип арланă, çип пĕтĕрнĕ сас илтĕнетчĕ. Куна Пирĕшти ĕçлет тетчĕç. Вăл яланах начар çынсене шеллет тет. Тăлăх хĕрарăма та çип пĕтĕрсе, çип арласа пулăшать тет.

198

Пирĕшти — кил-çурт тытса пыракан турă теççĕ. Каçхине пĕтĕм çемье çывăрса кайсан Пирĕшти, хĕрарăм пекскер, кил хуçи хĕрарăмĕн кĕнчелине тытать те кăлтăр! кăлтăр! тутарса çип арлама пуçлать тет. Вăл çын куç умне курăнасшăн мар тет. Кам та кам вăл ĕçлесе ларнине курать, çавна пуçĕнчен пырса йĕкипе шак! тутарать тет. Йĕки тимĕр тет.

199

Пирĕшти — кил-çурт хуçи. Вăл кашни килтех пур, унсăр никам та пурăнмасть. Пирĕштирен асли никам та çук. Кил хуçисем ют çĕре куçса кайнă чух Пирĕштие çапла чĕнеççĕ: «Пирĕшти, атя пирĕнпе пĕрле, ан юл». Вара Пирĕшти яланах çынпа пĕрле çӳрет. Пирĕшти тирпейлĕхе питĕ юратать. Хĕрсем каçхине çӳçĕсене тирпейлесе выртмасан (сапаласа ярсан), вăл çивĕтлесе хурать. Пӳртре шăхăрсан Пирĕшти тухса тарать теççĕ.

## 200

Кашни килтех пирĕштисем пур. Вĕсем шурă тăхăннă пĕчĕк хĕр ачасем. Пирĕштисем киле-çурта инкек-синкекрен, усал-тĕселтен сыхласа пурăнаççĕ. Хуçисем хирĕçсе ятлаçса пурăнаççĕ пулсан вĕсем пăрахса кайма пултараççĕ. Хуçисем лайăх пулсан вĕсене пулăшса пыраççĕ. Вĕсем урай шăлса каяççĕ, кĕнчеле арлаççĕ хуçисем çывăрнă чух, юрла-юрла ĕçлеççĕ çынсем çывăрнă чух. Юратнă хуçин çивĕтне те çивĕтлесе яраççĕ. Анчах Пирĕшти çивĕтленĕ çÿçе салатма пулмасть.

## 201

Килте кил хуçи пулать тет. Ăна пирĕн патра Пирĕшти те, Хĕртсурт та тесе калаççĕ. Вĕсем кашни килĕрех пулаççĕ. Пирĕштипе Хĕртсурт усал мар. Вĕсем пÿрт-çурта сыхлаççĕ, усал, çапăçса пурăнакан кил-çуртран тараççĕ. Пирĕштипе Хĕртсурт çынна усал-тĕселрен сыхлаççĕ.

Пирĕшти çĕрле кĕнчеле арлать тет. Вăл арласан пурнăç малалла каять, ĕç ăнать тенĕ ĕлĕкрен. Туй, хăна, тĕрлĕрен уявсем умĕн арлани лайăха пĕлтернĕ.

Пирĕшти вăл хĕрарăм тет. Хитре, илемлĕ кĕпе тăхăнать тет. Ĕçкĕренмĕнрен е ăçтан та пулин килсен: «Аван-и, Хĕртсурт!» — тенĕ. Килтен пĕрер çĕре кайнă чух: «Сывă пул, Хĕртсурт!» — тесе хăварнă.

Хĕртсурт вăл выльăх-чĕрлĕхе те пăхать тет. Пирĕшти — кил-çурта кăна. Çавăнпа та Хĕртсурта «карта хуçи», Пирĕштие «пÿрт хуçи» теççĕ.

Хĕртсурт выльăх-чĕрлĕхе юратать тет. Унăн чи юратнă выльăх пулать тет. Çав чи юратнă выльăхăн çÿçне çивĕтлет вăл. Пирĕн пĕр илемлĕ шур лаша çÿçне çивĕтленĕ. Ăна нимле те касса илсе пулмасть. Касса илме юрамасть ăна, лашине çăмăллăх кÿрсе тăрать вăл.

Пирĕшти çын çÿçне çивĕтлет. Вăл хăй юратакан çыннăн çÿçне çивĕтлет тет. Çав çивчĕ ĕмĕрлĕх пулать тет. Ăна касса илейместĕн тет. Çивчĕ çынна телей кÿрет тет.

Пирĕштипе Хĕртсурта ырă вăй (турă хăвачĕ) тенĕ.

## 202

Пÿрте пăссан Пирĕшти макăрать тет. Ĕçкĕрен таврăнсан: «Пирĕшти, тав сана», — тесе каламалла тет. Пирĕшти пÿрте вут-кăвартан сыхлать. Пирĕшти хĕлĕпе те çăвĕпе яланах кĕнчеле арлать тет.

## 203

Пирĕшти — кил-йыша тĕрлĕ инкек-синкексенчен сыхлаканĕ. Вăл пÿртре кăмака хыçĕнче пурăнать. Ăна çиллентерсен вăл килтен тухса каять. Çавăнпа та пÿртре ытла хытă шавлама юрамасть. Пирĕшти килте инкек пулас умĕн тухса каять. Çапла пĕррехинче урам тăрăх шап-шурă тăхăннă хĕр ача йĕрсе анса кайнине çынсем курнă. Ăна курнă хыççăн нумаях та вăхăт иртмен, ялта пушар тухнă. Пирĕшти ялта пушар тухассине сиссе ялтан тухса кайнă.

## 204

Пĕр пĕчĕкрех ача сăрт хĕрринче, уйра, ĕне çитерсе çÿренĕ. Кĕтмен çĕртенех ун патне пĕр Пирĕшти тухса тăнă. «Епле илемлĕ вырăн райри çынсемшĕн!» — тет. Ача ăна-кăна шухăшламасăр: «Вилсессĕн эпĕ çак вы-

рăнта çăва пуçĕ пулăп», — тет. Ача ӳссе çитсе яш пулать, авланса ача-пăчаллă та пулать. Часах вилĕм вăхăчĕ те çитет. Чăнах та, вилсен çак çын çăва пуçĕ пулса тăчĕ.

Ахальтен каламан пуль çав çăвара килни умма çитет тесе.

## ÇӲЛТИ ПУЛĂМСЕМПЕ ХĂВАТСЕМ

*Тĕнче уçлăхĕнче пулса иртекен тĕрлĕ пулăмсене ансат йăлаллă этем хăйне майлă ăнланса пынă. Аслатипе çиçĕм, аçа çапни, асамат кĕперĕ карăнни çынна хăйсен чăрсăр хăвачĕпе хăратнă та, ăмсантарнă та. Хăракан çын аслă хăватсене ӳкĕтлеме, çырлахтарма тăрăшнă. Кăмăлĕсем ырă чухне вĕсем çынсене сиплĕх-ырлăх парасса кĕтнĕ. Çак ĕмĕт уйрăмах Кăвак хуппи уçăлнипе çыхăннă халапсенче нумай. Сайра пулакан тĕлĕнтермĕш çынсене савăнтарнă, вара унпа пĕтĕм лайăх пулăмсене çыхăнтарма пуçланă.*

*Çумăрпа юр, çилпе тăвăл, нӳрĕкпе сывлăм — пурте этеме пурнăç тума кирлĕ. Вĕсем сиен тума та пултараççĕ; çил е çумăр тырра çапса каять, тăвăл тинĕсри кимме путарать, çавра çил кил-çуртпа хуралтăсене сиен туса хăварать. Çавсене сăнанисем авалхи хайлаллă халапсенче пухăнса пынă. Тĕшмĕшрен ăслăлăх вĕрентĕвĕ патне çитмелли çул хайлалăх урлă выртнă.*

### Аслатипе çиçĕм

*Аслати — Аслă Турă шуль́ăшĕ, хăй Турă. Вăл ырă та, хаяр та. Çӳлти тĕнчери турăсенчен ăна ытларах пĕлеççĕ, мĕншĕн тесен ăна асăрхамасăр юлма çук: кашни çуллах кĕрлет вăл. Ялти ача-пăча ăна ку таранччене «аслă атте» е «тур мучи» тесе калать.*

*Аслати халапĕсем — тĕнчери пĕтĕм халăхсен сăмахлăхĕнчи хайлалăхăн пысăк пайĕ. Аслати хăйĕн капăр урапипе, вичкĕн учĕсемпе пĕлĕт тăрăх кĕмсĕртеттерсе çӳрет, уй-хирсене çумăр парать, Шуйттана хăвалать. Ăна тивертме Аслати туррăн Çиçĕм те, Аçа чул та пур. Вăл вĕсене вирхĕнтерсе ярсан Тĕнче кисренет, Çĕр çурăлать. Аслă Турă хушнă паттăрсем те çак кĕрешӳре вăй виçеççĕ. Улăп, Ташмаш, Кăварпи тата ытти паттăрсем çĕр çинчи ырлăхшăн тăраççĕ.*

*Аслати вăхăтĕнче чĕрчунсене, юпа таврашне тытма юраманни, унта-кунта чупса çӳремелле марри çинчен вĕрентни тĕрлĕ халапсенче пур.*

**205**

Пĕлĕт кĕрлени Аслати турă хăй лашисемпе явăла хăваласа çӳренĕрен пулать. Турă явăла çапнă чухне çĕр чĕтресе каять, лаша таканĕсенчен çиçĕм сирпĕнет.

Çумăр чухне явăл кушак е йытă ăшне тарса пытанать, çавăнпа вĕсенчен аяккарах пулма тăрăш.

Аслати ан çаптăр тесен Турра асăнса вырăнта тăма хушнă.

**206**

Ĕлĕк арлă-арăмлă пĕр çын пурăннă тет. Вĕсен пĕр ывăл пулнă тет. Вăтăр çула çитиччен вăл утмасăр пурăннă тет. Вăтăр çул асапланнă тет, вăтăр пĕрмĕш çулта чĕрĕлчĕ тет. Вăл чĕрĕлни ак çапла пулнă тет:

Пĕрре унăн ашшĕ ниме пухса вăрман кăклама кайнă тет, çак уксак ывăлĕ анчах юлнă. Кăнтăрла çитсен кăсен чӳречи патне пĕр шап-шурă кача сухаллă старик пычĕ тет те кăна: «Тăрса шыв ăсса пар-ха мана», — терĕ тет. Ку уксак ывăл: «Эпĕ ăрат тăрса парăттăм та çав, эпĕ уксак, утаймастăп», — тесе каларĕ тет. Старик: «Хăçантанпа апла асапланатăн?» — тесе ыйтрĕ тет. — «Ĕнтĕ вăтăр пĕрмĕш çул çине кайрĕ», — терĕ тет уксак. Вара старик пӳрте кĕрсе кăна аллисенчен тытса тăратрĕ тет те, ку çӳре пуçларĕ. Старик ăна пĕр витре шыв ăсса килме хушрĕ тет. Хай уксак пĕр витре ăсса килчĕ тет. Старик вăл витрери шыва витрипе тытса ĕçме хушрĕ тет. Ку пĕр витре шыва тĕппипех ĕçсе ячĕ тет. Старик кăна: «Мĕн чухлĕ пулĕ ĕнтĕ сан вăю?» — терĕ тет. Ку калать тет: «Нумаях мар, çак çĕр варрине пĕр ылтăн юпа лартсан, çав юпаран тытса çĕре çавăрса ярăп çав», — терĕ тет. «Ах, пит нумай-ха санăн вăй, тепĕр витре ăсса килха», — терĕ тет старик. Ку ăсса килчĕ тет те тата тĕппипех ĕçсе ярать тет. Старик: «Нумай юлч-и?» — терĕ тет. «Çитĕ, хама пурăнма анчах юлчĕ», — терĕ тет. Старик кайрĕ тет вара. Вăл старик ахаль çын пулман тет иккен, Турах пулнă тет. Ку уксак чĕрĕлсенех савăнса тӳрех ашшĕсем патне кайрĕ тет. Кăклакан çĕрне вăл пĕлместчĕ тет, çапах çав пĕр аташса çӳремесĕрех тупрĕ тет. Ашшĕсем кăна курсан шарт! тĕлĕнеççĕ тет. Кăнтăрла ларса çирĕç тет ку пырсан, çирĕç тет те, пурте выртрĕç тет те çывăрса кайрĕç тет. Ку хай, халиччен ниçта тухманскер, савăнса вăрманта каллĕ-маллĕ утса çӳреме пуçларĕ тет. Çӳрет тет, кăна ӳсекен йывăçсем чăрмантараççĕ тет. Çиллипе тытăнчĕ тет вăрмансене тĕпĕ-тымарĕпе лăскама. Туртса кăларать тет те шав çырмана тултарать тет. Çапла тултара-тултара çырмана пĕвелерĕ хучĕ тет. Шыв çырмана тулса вăрманалла тарса сарăлса кая пуçларĕ тет. Хай çывăракан çынсем айне те юхса кĕчĕ тет. Çынсем сиксе тăчĕç тет, пăхаççĕ тет: хай уксак йывăççене тĕпĕ-тымарĕпе лăскать тет. Ку темĕскер хамăра вĕлерсе пĕтерĕ тесе хăраса пурте киле тарса кайрĕç тет. Ку пĕчченçи анчах тăрса юлчĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет, çӳлтен пĕр вутлă урапа анчĕ тет те çак çынна пĕлĕт çине улăхтарчĕ тет.

Çавăнтан вара çав çын çумăр çума тытăнсанах çав вутлă урапа çине ларать тет те кăлтăртаттарса çӳрет тет. Çапла вара аславти пулса кайнă тет. Унччен ĕлĕк аславти пулман тет. Аславти пулма та вĕт ĕлĕк пĕлĕт пит лутраччĕ тет, аслăк çӳлĕшĕ анчах пулнă тет. Çак çынна улăхтарсассăн вара çав пĕлĕт те улăхса кайрĕ тет. Пит нумай пулать тет ĕнтĕ вăл. Çав пĕлĕт çине улăхса кайнă çын Илье ятлă пулнă тет.

## 207

Пĕр çын ĕлĕк хăртнă тĕплеме ниме тунă. Çак ниме халăхĕ хăртнă тунката тĕпленĕ. Кусен килте пĕр хĕн куракан ача юлнă, вăл Илля ятлă пулнă. Çакă Илля патне пĕр шурă сухаллă çын пырса кĕчĕ тет. Илля: «Килях, ырă çын», — тесе каларĕ тет. «Сирĕн кăçта кайнă-ха?» — тесе ыйтрĕ тет старик. Илля каларĕ тет: «Пирĕн хăртнă тĕплеме ниме туса карĕç-ха», — терĕ тет. Ку старик Илляна калать: «Тăрса лар-ха эсĕ», — тет. Илля калать: «Хам тĕллĕн тăраймастăп çав эпĕ». «Тăр-ха, тăр», — тет. Илля майланса тăчĕ тет. «Ну, ут-ха урайĕнче», — тет. «Эй, ырă çын, утма мар, халĕ тăрса ларнишĕн те тем тĕрлĕ хĕпĕртерĕм», — тет. Хай старик: «Ну, ут-ха, ут», — тет. Хай ура çине тăрать те утать. Хай Илля пушшех хĕпĕртерĕ тет. Хай Илля калать: «Эй, ырă çын, пăртак сăра ĕçмесни эсĕ?» — терĕ тет.

Хай старик: «Илсе кӗр-ха эппин», — терӗ тет. Хай Илля пӗр алтӑр илсе кӗрет тет. Хай старик: «Хӑв ӗҫ-ха пирвай», — тет. Хай Илля ӗҫет чӑнах та. Ӗҫсе ячӗ те вӑй кӗнӗ пек туйӑнчӗ тет Илляна. Хай витрепе ӑсса кӗрет Илля сӑрана, ку хай старике парать те, старикӗ пӑртак сыпса парать: «Эсӗ хӑв ӗҫ-ха тепӗртак, вӑй кӗтӗр», — тет. «Халӗ, — тет Илля, — пӗр пӳрт пек чул пулсан уна тытса ҫӗклемелле». «Унки пулсан ҫӗклетӗн-ха, — тет, — тепӗр алтӑр ӗҫ-ха», — тет. Хай Илля тепӗр алтӑр ӗҫет те, татах вӑй кӗрет. Хай старик ыйтать: «Халӗ мӗнле ӗнтӗ?» — тет. Ку Илля калать: «Халӗ, — тет, — ҫӗрӗн унки пулсан ункинчен тытса ҫӗклӗттӗм», — тет. «Ну, халӗ хӑртнӑ тӗплеме кай ӗнтӗ, — тесе каларӗ тет ҫакӑ старик Илляна, — кам кӗрсе тухнӑ, уна ан кала», — терӗ тет те старик, тухса кайрӗ тет. Унтан Илля та хӑртнӑ тӗпленӗ ҫӗре карӗ тет. Ҫитнӗ чухне: «Ха, Илля килет, — тесе калаҫҫӗ тет, хӑшӗ-хӑшӗ ӗненмеҫҫӗ тет, — вӑл епле килтӗр, 12 ҫултанпа хӗн курать те», — теҫҫӗ тет. Хай патне ҫитсен Илля пурне те старав* турӗ тет, ҫынсем шалт тӗлӗнсе карӗҫӗ тет. Хай Илля тӗплеме тытӑнчӗ тет, тункатана тытать та кӑларса ывӑтать тет. Ҫынсем апат ҫисе тӑраниччен тӗплесе пӗтерчӗ тет, унтан мӗнпур ҫын пурте тӗлӗнеҫҫӗ тет. Вара пурте тавӑрӑнчӗҫ тет киле, ниме халӑхне ӗҫтерсе-ҫитерсе кӑларчӗҫ тет. Унтан кайран Илля нумаях та пурӑнман ҫӗр ҫинче, пӗлӗт ҫине ҫӗкленнӗ, вара вӑл пӗлӗт ҫинче вутлӑ-хӗлхемлӗ лашапа, вутлӑ урапапа аслати алттарса ҫӳрет тет.

## 208

Пурӑннӑ тет Елисей пророкпа Илья пророк. Вӗсем пӗртӑвансем пулнӑ тет, пиччӗшӗпе шӑллӗ. Илья пророкпа Елисей пророк малтан питӗ туслӑ пулнӑ тет. Нихҫан та вӑрҫман тет. Пӗррехинче ҫапла темшӗн Ильяпа Елисей пророк (кӑна астумастӑп, маннӑ) вӑрҫса кайнӑ тет. Вӗсем хушшинчи хирӗҫӳ питӗ вӑйлӑ пулнӑ тет. Илья пророк Елисей пророкран нумай вӑйлӑ пулнӑ тет. Тата хаяртарах пулнӑ тет. Елисей пророк Ильяран хӑраса пар лаша ҫине ларса тарма пуҫланӑ тет. Ӑна Илья пророк хуса ҫитнӗ тет те пар лашана туртса илсе малалла кайнӑ тет. Вӑл лашапа пынӑ урапасем хӑлтӑртатнипе пӗтӗм тӗнче кисреннӗ тет. Илья пророк ҫӗр ҫинче урӑх юласшӑн пулман тет. Вара лаши урапи-качкипех пӗлӗте ухса кайнӑ тет. Елисей пророк ҫӗр ҫинчех юлнӑ тет. Халӗ те Елисей йӑхӗсем ҫӗр ҫинче питӗ нумай пурӑнаҫҫӗ тет. Илья пророк халӗ те унтах тет. Хӑй урарисемпе хӑлтӑртаттарса ҫӳрет тет. Аслати авӑтнӑ чухне пирӗн ял ҫыннисем: «Вонӑ, Илья пророк урапипе хӑлтӑртаттарса пырать», — теҫҫӗ.

## 209

Ӗлӗк пӗр Аслать ятлӑ этем вӑтӑр ҫул хушши утаймасӑр пӗр вырӑнта ларнӑ тет. Турӑ шур сухаллӑ старик пулса ҫӳренӗ чух ҫак Аслать этем чӳречине пырса ӗҫме шыв ыйтнӑ тет.

— Эх, ырӑ ҫыннӑм, тархасшӑн, пӳрте кӗр. Тӗпсакайӗнче икӗ саркавай сӑра пур. Аттесем ӗҫе кайнӑ. Хам ҫапла вырӑнтан тапранаймасӑр вӑтӑр ҫул выртатӑп. Ырӑ сунсах сакайӗнчен ӑсса тухса ӑш каниччен ӗҫме ыйтатӑп, — тенӗ тет Аслать.

Аслать ырӑ та уҫӑ кӑмӑллӑ пулни Турра тӗлӗнтерсе янӑ тет. «Ку Шуйт-

* Сывлӑх сунчӗ.

танпа Эсрел пек мар, мана ĕмĕрех юратса пăхакан пулать», — тесе шутланă тет Турă. Вара Аслате:

— Турруна асăн та тăрса утса пăх, — тенĕ тет Турă.

— Эй, атте Турра асăнсан та тем пулмасть пуль. Тăрса утакан пулсан мĕн виличчен сан сăмахунтан тухман чуру пулăттăм, — тет Аслать.

— Тăр, тăр, — тет Турă Аслате.

Аслать тăрса утать. Турă вара Аслате çумăрпа кăвар парса пĕлĕт çине илсе улăхать тет.

Çавăнтан вара аслати пулса кайнă теççĕ.

## 210

Ĕлĕк-авал çĕр çинче нимĕн те пулман тет, пĕр пĕлĕт анчах пулнă тет. Пĕлĕчĕсем çĕр çумĕнчех пулнă тет.

Пурăнсан-пурăнсан улăпсем килчĕç тет. Вĕсем сунар ĕçĕпе пурăннă тет. Пĕр Улăпĕ сунартан килчĕ тет те пĕлĕт çине канма выртрĕ тет. Питĕ ывăннипе çывăрса кайрĕ тет.

Кăшт тăхтасан юлташĕсем те сунартан таврăнчĕç тет, çывăракан Улăпне вăратаççĕ тет. Ку, çывăраканскер, темĕн чухлĕ вăратсан та тăмасть тет. Вара кусем çилленсе каяççĕ те çывăракан Улăпа пĕлĕчĕ-мĕнĕпе çӳлелле тĕртсе ухтарса яраççĕ тет. Улăпĕ çаплах çывăрать тет, вăранмасть тет.

Çывăрсан-çывăрсан хай Улăп вăранать тет. Пăхать тет йĕри-тавра, никам та курăнмасть тет, пĕлĕтсем анчах чупаççĕ тет. Вара ку тăчĕ тет те юлташĕсене шырама пуçларĕ тет, пĕлĕтсем тăрăх пĕр еннелле чупать тет, никам та çук тет, тепĕр еннелле каять тет, каллех юлташĕсене тĕл пулмасть тет. Вăл чупнă чух пĕлĕтсем кĕмсĕр-кĕмсĕр тăваççĕ тет, вăл ăçта пусать тет, çав тĕлте аслати тухать тет, çиçĕм пулать тет. Никама та шыраса тупайманнипе Улăп çав тери хурланса йĕрсе ячĕ тет, вара ун куççулĕнчен çумăр пулса çурĕ тет.

Çав Улăп çĕр çине анаймарĕ тет, пĕлĕт çинче ĕмĕрлĕхех пурăнма юлчĕ тет, пĕчченех пурăнать тет. Тин ĕнтĕ çĕре анаймасть тет. Кайран вара çак Улăп Турă пулса тăчĕ тет.

## 211

Аслати авăтнине çынсем акă çапла калаççĕ: пĕлĕт çинче Христос турă пур. Вăл шыв патне тимĕр каткапа çӳренĕ тет лашапа. Вара лаши чупнă май ураписем питĕ хытă шалтăртатнă тет. Çав сасă çĕр çине аслати авăтнă пек илтĕннĕ тет. Лашине туртса çапсан пушши вĕçĕнчен хĕлхем тухнă тет. Вăл вара çĕр çинчен çиçĕм пек курăннă тет.

## 212

Чи малтан Аслати те, Çиçĕм те пулман тет. Çынсем иртĕхсе каясран Турă вĕсене мĕнпе те пулин хăратасшăн пулнă тет. Вара вăл Илья пророка тимĕр урапапа вут вĕçлĕ пушă панă тет. Илья пророк шыв патне кайнă чух тимĕр урапи питĕ хытă шалтăртатнă тет. Каялла килнĕ чух пичкинчен шывĕ тăкăннă тет. Лаши хăвăрт утайман пирки Илья пророк ăна вут вĕçлĕ пушшипе хăваланă тет. Çаксене çĕр çинче аслати авăтать, çиçĕм çиçет, çумăр çăвать теççĕ.

**213**

Аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче пўрт-çурта лайăх питĕрмелле, кантăксене хупмалла, атту аслати çапать. Çиçĕм çиçнĕ чухне çара пусăн е çўçе кăтартма юрамасть теççĕ, атту аслати çапать. Аслати сассине çакăн пек пулать теççĕ пирĕн патра. Илле Пророк лаша кўлсе ларнă тет те пичкене шыв тултарнă тет. Пички пăккинчен шывĕ юхса пырать тет те çумăр çăвать тет. Çулĕ тумхахлă пулнипе урапи кĕмсĕртетет тет. Вара аслати сасси илтĕнет тет. Лашине пушшипе çапать те, çиçĕм çиçет тет.

**214**

Илле пророк текенни пĕлĕт çинче шыв турттарса çўренĕ. Вăл пĕрре хăйĕн вăрăм пушшийĕпе сулса ярать тет те, йĕри-тавра çулăм тухать тет. Çак çулăм вăл çиçĕм тет. Урапи çинчи пички кĕмсĕртетсе пынипе хăватлă сасă пулать тет. Ку вăл аслати тет. Урапи çинчи пички силленсе пынипе пичкери шывĕ каллĕ те маллĕ сирпĕнсе пырать, ку вара çумăр пулса çăвать тет.

**215**

Илле пророк 3 лаша кўлнĕ тимĕр урапана кустарса хăнтăртаттарса çўрет тит. Пушшипе усалсене шартлаттарса çапать — аслати çапни пулать. Илле пророк вут чулне шаккаса çулăм кăларать тит — çиçĕм çиçни пулать. Илле пророк усалсем нумайланса кайсан пушшипе çапать тит. Аслати вăхăтĕнче çурта çутаççĕ, Турра кĕлтăваççĕ. Аслати хытă аватнă вăхăтра çутма мăнкунта çуннă çурта тĕпне хăвараççĕ.

**216**

Ĕлĕк-авал аслатиллĕ çомăр çонине çынсам пĕлнĕ ĕнтĕ. Малтан Мăнаçи аватнă, ун хыççăн Çиçĕм çиçсе ярнă, чут тăхтасан вара çомăрĕ çома пуçланă. Çиçĕм полни çинчен çынсам çапла калаччĕ. Пĕлĕтсем, шорăскерсем, хораскерсем, пĕр-пĕринпе пырса çапăннă. Вара шотсăр вăйлă сасă полнă, пĕтĕм тĕнчене янратнă, вăл аслати полнă.

Пĕлĕт çапăннă хыççăн шотсăр вăйлă çутă полнă, орăхла каласан, хĕм тохнă. Вот çавă çиçĕм полнă.

**217**

Пĕлĕт çинче пĕр сухаллă старик ал арманĕпе чул авăртать тет. Сасси вара çĕр çине илтĕнет тет. Кăна çынсем аслати теççĕ.

**218**

Аслати авăтса çиçĕм çиççен е аçа çапсан Шуйттан çапать теççĕ. Пĕрре çапла 1911 çулта пĕр çын çуртне аçа çапрĕ, пĕр эрне маларах кăна пĕве татса кайнă пулчĕ, çитменнине, пĕвине те татса карĕ теççĕ. Шуйттан ниçта кайса кĕреймесĕр трупа çумне пырса çапнă теççĕ, çавна аслати çапни теççĕ.

**219**

Турă Явăла хăваланă. Лешĕ тара-тара пĕр пўрте уçă мăрьерен кĕрсе кайнă.

Аслатиллĕ çумăр чухне мăрьесене, чўречесемпе алăксене хупас пулать, унсăрăн пўрте Çиçĕм те кĕме пултарать.

Явăл хыççăн Çисĕм мăрьене вирхĕнсе кĕнĕ те, вут чăмăркки пулса тискер вăя çапăннă. Лешĕн юнĕ пўрт айккисене сирпĕннĕ. Юн тивнĕ вырăнсене вут хыпса илнĕ, пушар тухнă.

## 220

Усал (Шуйттан) Турра виркленĕ тет. Турра епле те полин хытăрах вирклес тесе Шуйттан котăн тăрса мăшкăланă. Вара Шуйттана Мăнаçи çапса вĕлернĕ тет. Шуйттан çĕре потсах анса кайнă тет вара. Мăнаçи хăш чох йывăça çапать. Вăл йывăç ăшĕнче Осал порăннă поль теççĕ.

## 221

Аслати авăтнă чух Микул турă пĕлĕтсем çинче хăй лашипе çўрет. Вара кустăрмисам халтăртатаççĕ те, аслати авăтни илтĕнет.

Çиçĕм вăл Турă Усала хăваланă чух пулать. Усал кушак пулса Турăран тарать. Турри вара кушак пытаннă япаласене аслати çаптарать. Кушак çын хыçне пытансан Турă çав çын çине аслати çаптарать. Çавăнпа аслати авăтнă чух, çиçĕм çиçнĕ чух кушака хăв çумна тытма юрамасть.

## 222

Аслати Турă сывлăшĕ. Турă пĕлĕте уçса вут кăтартать, хăй хăватне çынна кăтартасшăн. Хăйĕн сывлăшĕпе Аслати авăтать хăй сывлăшне (хăй пуррине) пĕлтерме.

## 223

Аттесем: çумăр çунă чухне çĕлĕке илсе сăхсăхас пулмасть, çĕлĕке илсен çўç ăшне Шуйттан кĕрсе ларать те, вара Аçа çапса вĕлерет тесе калатчĕç.

* * *

Чăвашсем аçа çапнине урăх тĕрлĕ шухăшлаççĕ. Усал пĕр-пĕр çурта кĕрсен, Турă вара çав Усала çапма хăтланса çурта та тивертсе ярать теççĕ е пĕр-пĕр çын çумне сыпçăнсан çапать теççĕ. Тата çумăр çунă чух хытă çўреме каламаççĕ, хытă çўресен Усал сыпçăнать теççĕ.

## 224

Аçа çапни Шуйттана тивсен, симĕсĕн-кăвакăн çунат тет, Шуйттана тивмесен çунмас тет.

## 225

Аçа чулĕ — чăп-чăмăр, тăрăхларах та пулать. Аçа çапсан аçа чулĕ çĕре анса каять те çичĕ çултан анчах тухать теççĕ. Ăна телейлĕ çынсем анчах тупаççĕ. Ăна сăра çине ярсан пит хытă йўçет те пит хаяр пулать.

## 226

Аслати çапнă çурта тивме, патне пыма юрамасть. Ăна Турă çилли тивнĕ, унта турра çиллентернĕ çынсем пурăннă. Çыннисене те, япалисене те илсе тухмаççĕ — вăхăт тасаттăр теççĕ.

## Асамат кĕперĕ

*Асамат кĕперрине Сĕрен, Сĕрем, Сĕвек кĕперри теççĕ. Вăл тĕнче пуçлансанах пулман. Ăна Турă тунă тенĕ. Асамат кĕперри çичĕ тĕслĕ пулнине вăл çичĕ тăванран пулса кайнипе çыхăнтараççĕ. Асамат кĕперĕ тăрăх Турă пĕлĕт çине шыв илсе çумăр çутарни çинчен калакан халап авалхи этемĕн тĕнче курăмне кăтартать. Асамат кĕперри Турă хĕрĕн пиçиххийĕ е масмакĕ тени пур. Çав пиçиххи (масмак, кĕпе арки) тăрăх çылăхлă çынсене тамăкран кăларни çинчен калакан халапсем кайранхи тĕн хутшăнăвĕпе йĕркеленнĕ теме пулать. «Турă хĕрĕн пиçиххийĕ симĕссĕн-кăвакăн курăнать», «масмак çине, хулçи çине, сурпан çине чăвашсем асамат кĕперĕ тĕрлеççĕ, çичĕ тĕслĕ çиппе çичĕ йĕр тăваççĕ» тенисем чăвашăн илемлĕх тĕнчи, тĕрĕ, пир-авăр тăвас ăсталăхĕ ӳссе-аталанса пынăçемĕн пулса кайнине кăтартаççĕ.*

### 227

Ĕлĕк, тĕнчене шыв илнĕ чухне те, Асамат кĕперĕ пулман тет. Пĕрремĕш тĕнче пĕтнĕ хыççăн Ной хăй çемйипе халăха тепĕр хут ĕрчетме тытăннă. Çав вăхăтрах Асамат кĕперĕ те тухма тытăннă. Асамат кĕперне Турă тунă пулать.

### 228

Турă ăна çĕре анма симĕсĕн-кăвакăн курăнакан кĕпер хывса пачĕ.

* * *

Пăх-ха асамат кĕперри çине, ăна пултаракана мухта, мĕн тĕрлĕ илемлĕн çуталса тăрать вăл! Пĕлĕт çинче авăнса, карăнса тăрать вăл, Çӳлти Турă алли карса хунă ăна.

### 229

Сĕрем кĕперрине чăвашсем пĕлĕт çине хăпармалли çул теççĕ. Вăл çулпа сĕтпе çăвăнсан, лашине те сĕтре шыва кĕртсен тин хăпармалла теççĕ, ахаль Сĕрем кĕперрине хуса çитмелле мар теççĕ, вăл тарать çынтан.

### 230

Пĕр çын кĕтӳ кĕтнĕ тет. Вăл Асамат ятлă пулнă. Пĕрре унăн шыв урлă каçмалла пулнă. Ниепле те каçма çук тет, тăршшĕпе шыв тет. Туррăн хĕрĕ пулăшма шутланă. Пиçиххине салтнă та, эрешлĕ-мерешлĕ, тĕрлĕ тĕслĕ кĕпер пулса тăнă. Вара Асамат выльăххи-мĕнĕпе каçнă тет çав шыв урлă. Çавăнпа Асамат кĕперри теççĕ ăна, çумăр хыççăн тухать вăл.

### 231

Асамат çырмасенчен шыв илет те Çĕр çине çумăр туса сапать. Асамат (Саламат) кĕперĕ виç çул курăнмасан аван пулмасть тет, тĕнче пĕтет тет.

## 232

Вăл Асамат кĕперĕпе шыв ухать пĕлĕт çине. Турă хăй те çавă кĕпер çинчен анса ухать тет çĕр çине. Кăвак лашине утланса çавă Асамат кĕперĕ айĕнчен тухсан арçынтан хĕрарăм пулать тет, хĕрарăмран арçын пулать тет. Вăл Асамат кĕперĕ çинче 7 тĕсĕ курăнать теççĕ.

## 233

Сĕвек кĕперри вайлă çăлтан шыв туртать, кăн-кăвак хăпарать, иккĕ харăс тухсан йĕпе вăрăм пулать теççĕ.

Вайлă çумăр пулас пулсан Сĕвек кĕперри вайлă сивĕ çăл тĕлне тухать, ак кунта хамăр улăхра.

## 234

Сĕвек кĕперрине Арарат тухури* тенĕ. Арарат тухури питĕ çӳллĕ пулнă. Çын пынине курсан вăл тарса хăпарнă. Арарат тухурин пуçламăшĕ Илле пророк сухалĕпе çыхăнса тăрать. Илле пророк савăнăçлă чухне Арарат тухури тĕрлĕ тĕспе çиçет. Сĕвек кĕперри Арарат тухуринчен пулса кайнă.

## 235

Асамат кĕперĕ вăл çăлкуçран шыв туртма анать тет.

Пĕр хресчен çумăр хыççăнах суха тума кайнă тет. Ани çине çитрĕ тет те сухалама пуçларĕ тет. Асамат кĕперри тухрĕ тет. Ку хресчен Асамат кĕперри витĕр сухалать тет. Пĕр майлă сухалать тет, касă чиперех выртса юлать тет. Тепĕр майлă сухалать тет, касă каялла хупăнса пырать тет. Хресчен аптăраса çитрĕ тет. Вара лашине тăратрĕ тет те Асамат кĕперри еннелле пĕр ывăç тăпра ывăтса ячĕ тет. Кун хыççăн суха касси чиперех пулса пычĕ тет. Ана урлă Асамат кĕперĕ каçнă чух суха тума юраман тет.

## 236

Вайлă аслатиллĕ çумăр хыççăн курнă пуль, хитре те илемлĕ Асамат кĕперĕ пулать. Мĕншĕн тухать-ха вăл? Çумăр çутаракан Туррăн çумăр çутармалли пĕтет тет. Çав кĕперпе, Асамат кĕперĕпе, шыв илет тет тепре çумăр çутарма. Ăçтан çумăр илет, ăçта Асамат кĕперĕ тухать, кайран çавăнта çумăр çутарать тет Турри.

## 237

Асамат кĕперне тепĕр майлă Сĕвек кĕперри теççĕ. Асамат кĕперри çырмаран шыв илнипе пулать. Асамат кĕперри тухсан çынсем: «Темле вайлă çăлкуçран шыв хăпарать», — тесе калаççĕ. Асамат кĕперне пăхса сурпан çине тĕрĕ тĕрлеççĕ.

## 238

Асамат кĕперĕ карăнсан: «Туррăн хĕрĕ пилĕкне салтнă», — теççĕ. Пиçиххийĕ çавăн пек симĕссĕн-кăваккăн курăнать тет. Турăсене те, çынсене те çапла илемлĕн курăнса, хăй патне астарса илĕртсе тăрать тет. Анчах яхăнне те ямасть тет, кам та пулин патнерех пырсан пиçиххине пытарса хурать тет.

---

* Сăрт-ту, сăрт аякки.

Туррăн хĕрĕ çав пиçиххине çăварнирен пуçласа мăнкунччен тĕртсе кăларать тет.

Асамат кĕперĕ тăрăх çылăхлă çынсем тамăкран тухса пĕлĕт çине каяççĕ тет. Турă ĕлĕк тамăкран таса çынсене илсе тухнă тет, çылăхлисене хăварнă тет. Вара Тур амăшĕ Турăран:

— Ман кĕпе аркипе миçе çын хупланать, эп те çавăн чул çын илсе тухам-и? — тесе ыйтнă тет.

Вара, Турри ирĕк парсан, пиçиххине салтса сарчĕ тет те тамăкран пурне те илсе тухрĕ тет.

## 239

Масмак çине те, хулçи çине те, сурпан çине те асамат кĕперĕ тĕрлеççĕ. Çичĕ тĕслĕ çиппе çичĕ йĕр тăваççĕ. Сурпан шĕркеми* те çавах. Çавна «асамат кĕперĕ» теççĕ.

Ĕлĕк Туррăн хĕрĕ пулнă. Çав пĕр кĕтӳç ачине юратнă та, масмакне салтса сарса, асамат кĕперĕ туса, çав асамат кĕперĕ тăрăх çĕр çине анса çӳренĕ тет. Вара çапла ача тунă тет çав хĕр çак кĕтӳç ачипе. Ачи пĕр пичĕ уйăх, пĕр пичĕ хĕвел пулнă тет. Турă хĕрне çилленсе лартнă та, ачине ураран çавăрса тытса пĕлĕт тăрне ывăтса янă. Халь те çав ача çавăнтах пурăнать тет. Эпир Уйăх тетпĕр ăна.

Хĕрне çилленсе лартнă тет Турă, кăкăрĕсене çитмĕл çич татăк туса çĕр çине салатса тăкнă. Тепĕр чух çав татăка çынсем тупкалаççĕ тет, веç чул пулса ларнă тет.

## 240

Асамат кĕперри çичĕ тĕсрен тăрать. Çичĕ пĕртăван порăннă тит. Асамат кĕперри çавсенчен полнă тит. Çав Асамат кĕперри витĕр хĕр тохсан каччă полса тăрать тит, каччă тохсан хĕр полса тăрать тит.

## 241

Асамат (Сĕвек) кĕперри витĕр тухсан хĕр арçын пулма, арçын хĕр пулма пултарать тет.

## 242

Пĕррехинче пĕр хĕр ача шыва кĕнĕ тет. Часах çумăр çума пуçланă. Çумăр çуса иртсессĕн шыв çийĕн Асамат кĕперĕ укаланса выртнă тет.

Хĕр ача çак Асамат кĕперĕ урлă ишсе тухнă тет те çак хĕр ачаран арçын ача пулса та тăнă тет.

# Вут. Вутчуль

*Чăваш халапĕсенче Вут пĕлĕтпе, çĕрпе, çĕр айĕпе çыхăннă. Аçа-çиçĕмрен тухнă вута таса вут тенĕ. Типĕ йывăçран сăтăрса кăларнă вута çĕнĕ вут тенĕ. Таçтан амакран сиксе тухакан вута вутлă сехмет тенĕ. Вутăн вăйхăвачĕ, вут йышĕ пысăк: вут-çулăм, аçа-çиçĕм, вут-кăвар, вут-кайăк, вутлă çĕлен, ырă вут, хаяр вут.*

---

* Шӳлкеми.

*Чӳксенче, киремет кĕллисенче Вут йыш туррисене асăнмасăр урттермен, тĕн уявĕсенче вутпа усă курнă. Вут тăшманпа усала хăратнă. Вут пур чире те, пур мура та ҫĕнтерет тенĕ. Кил-терĕшре усă куракан вута Турă вырăннех хунă. Хуран айĕнчен вут тухса кил-ҫурта ҫунтарса ан ятăр тесе, апат пĕҫернĕ чух кăвайт ҫине кашăкпа яшка сапнă е пăтă пăрахнă.*

## 243

Усалсене вутпа пĕтереҫҫĕ. Ҫын ҫакăнса е чикĕнсе вилсен ҫав ҫынни тытнă вырăнсене ҫунтараҫҫĕ.

## 244

Вута сурни, ун ҫывăхĕнче усал сăмах калани вут-кăвара кӳрентерни пулать. Вута суракан ҫыннăн пĕтĕм пĕвне ҫăпан тухать. Сывалас тесен унăн каҫару ыйтса юсман парас пулать. Вут ҫинче усал сăмах калакана вут пушарпа тавăрма пултарать.

Ҫиҫĕмрен тухнă пушара сӳнтерме малтан хура ĕне сĕчĕпе усă курмалла.

## 245

Пирĕн чăвашсем вут кайăкĕ пур теҫҫĕ. Вут тухас пулсан ҫавă вут кайăкĕ килет теҫҫĕ, кушак пек макрать вара вăл. Вара обезательнă вут тухать теҫҫĕ.

Тата вăл вут чĕлхине пĕлекен ҫынсем те пур. Ҫав ҫын вут патне пырать те вут чĕлхи каласа сурать. Вара вут чарнать.

## 246

Пĕр-пĕр ҫĕре кăвар ӳксен, вут кайăкĕ ҫунаттипе авăсса тивертет теҫҫĕ. Вăл пысăках мар кăвакарчăн пек анчах, тĕсĕ кăвар тĕслĕ теҫҫĕ. Ҫав кайăк пырса тивертмесен вут тухмасть пулать, сӳнет теҫҫĕ. Ăна вут кайăкĕ теҫҫĕ.

Пĕр-пĕр ҫын юри тĕртсе ҫунтарсан ҫулăм ăшĕнче ҫын пек курăнать теҫҫĕ.

## 247

Вăл вут-ама ҫинчен ак ҫапла халап ҫӳрет. Пĕр ҫын вут-амана пит хисепленĕ тет, тепри хисеплемен тет, вăл вут ҫине сурнă тет, тата урăххисене те тунă тет. Хисеплемен хуҫан Вут ами: «Эп вылям», — тесе калат тет. Тепри: «Ан выля», — тесе калат тет. Лешĕ калат: «Мана хисеплемеҫҫĕ, ҫавăнпа выляп», — тесе калат тет. Ку вут ами калат тет: «Вылясан выля эппин; тулькĕ асту, унта ман хуҫан ҫĕҫĕ пур, ăна ан тив», — тесе каланă тет. Пăртак тăрсан чăнах вут тухрĕ тет. Леш хуҫа пĕтĕмпе ҫунса карĕ тет, ку хуҫан ҫĕҫҫи ҫунмасăр юлнă тет.

## 248

Вут шыв пулса кайнă хыҫҫăн вăй илсе аталаннă. Ҫавăнпа та вутпа шыв тачă ҫыхăнса тăраҫҫĕ. Вуттăн та шыв пекех хăйĕн хăвачĕ пур тет.

Ҫавăнпа та килти вутта ҫынна пама чарнă тет. Ҫынна парсан вут ҫилленсе каять тет те сиен кӳрет тет.

### 249

Вут тухнă çыннăн япалисене вăрласан 30 хут хăйĕнне çухатать теççĕ.
Вут тĕртекен хăйĕн сăнне вут çулăмĕнче курать теççĕ. Вут тухсан пурте: «Вут куçне шыв, вут куçне шыв!» — тесе кĕлтăваççĕ.

### 250

Вут таса тенĕ ĕлĕкхи çынсем. Вут-кăвар тухсан вут чĕлхи каласа чарнă. Пĕр-пĕр çурт çунать пулсан, çав пӳртĕн пĕрени пуçĕнчен турпас касса илсе кăмакана пăрахса çунтарнă. Çапла тусан çулăм пӳрт йĕри-тавра çаврăнатьçаврăнать те сӳнсе ларать, çунма пăрахать тет.

### 251

Ĕлĕк Вутпа Шыв кам вăйлăрах тесе тавлашса кайнă. Шывĕ вут çине кĕрсе кайсан лешĕ хăранă та чул ăшне тарса пытаннă.

### 252

Ĕлĕк пĕрре Вутпа Шыв тавлашнă тет. Вут Шыва калать тет: «Эпĕ сана çунтарса яратăп», — тесе. Шыв Вута: «Эпĕ сана сӳнтерсе пăрахăп», — тесе калать тет.

Вут Шыва çунтарма тытăнчĕ тет те çунтараймарĕ тет. Шыв Вут патнелле капланса пычĕ тет те сӳнтерсех пăрахатчĕ тет. Вут вара хăраса чул ăшне тарса пытанчĕ тет. Унта тарса пытанман пулсан Вут пĕтĕмпех пĕтмеллечĕ тет. Кайран вара çав вут чулĕнчен Вут каллех пуçланса кайнă. Çавăнпа вут чулĕ ăшĕнче халĕ те Вут пур.

## Кăвак хуппипе шевле

*Сунарпа, çĕр ĕçĕпе пурăнакан çын кунпа каç мĕнле пулассине пĕр вĕçĕм сăнасах тăнă. Ирхи-каçхи шевлесем вылянине вăл чылайччен тĕрĕс ăнланайман. Тӳпе вăхăтлăха суталса илнине авалхи этем Кăвак хуппи, Пĕлĕт уçăлса хупăнни тенĕ.*

*Кăвак хуппи курăннине этем çĕр çинчи пулăмсемпе çыхăнтарса пăхнă. Сайра пулакан япала аслă вăйсемпе çыхăннă пулĕ, çавăнпа Кăвак хуппи Турă ывăлĕ çуралсан е çылăхсăр паттăр çын вилсен уçăлса хупăнать тесе ĕненнĕ. Сайра пулакан япалана этем хăй ĕмĕрĕнче 2—3 хутран мала кураймасть иккен. Çавăнпа Кăвак хуппине курсанах унăн хăйне кирлине ыйтмалла имĕш. Мĕн ыйтнă çав самантра, çавă пурнăçланатех тенĕ.*

*Хайлаллă халапсенче Кăвак хуппинчен темĕн ыйтакан та пур. Тыр-пулă пултарма, пĕр-пĕр хатĕр-хĕтĕр туянма ыйтаççĕ. Теприсем ача-пăча ыйтни курăнать.*

*Кăвак хуппипе каçхи шевле выляни çинчен Ахмад ибн Фадлан 988 çулта çырса хăварни кăсăк. Атăлçи сăварсем каçхи шевле вăхăтĕнче «ĕмĕлке театрĕ» уçнă, вăрçă-харçă вăййисене выляса кăтартнă.*

## 253

Тахçан та пĕрре шуçăм килнĕ чухне Кăвак хуппи уçăлать. Пĕлĕт икĕ енне уйăрăлса кайса кăн-кăвак таса пĕлĕт тухать. Кăвак хуппи уçăлнă вăхăтра телей ыйтаççĕ. Мĕн ыйтсан, çавă пурте пулать.

## 254

Кăвак хуппи çинчен çапла калаççĕ. Çылăхсăр çын вилсен ирхине хĕвел тухиччен шуçăм çутипе пĕлĕт икĕ-виçĕ хут уçăлса хупăнать.

## 255

Эпĕ унăн çĕршывĕнче тĕлĕнмелле япала питĕ нумай куртăм, пурне те асăнса пĕтерме те çук. Акă, тĕслĕхрен, пĕрремĕш куннех, хĕвел анас умĕн, каçхи кĕлĕ вăхăтĕнче пĕтĕм хĕвел анăç хĕрелсе кайрĕ. Çав вăхăтра эпĕ пĕлĕт çинчен тавлашуллă хаяр сасăсем кăшкăрашнине илтрĕм. Эпĕ пуçа çĕклесе пăхрăм та сывлăшра вут-кăвар евĕрлĕ хĕрлĕ кĕрен пĕлĕт явăннине курах кайрăм: хаяр кăшкăрашу-тавлашусем те çавăнтанах тухнă иккен. Çав пĕлĕт çинче эпĕ лашасем çине утланнă этемсем евĕрлĕ япаласене асăрхарăм. Этем кӳлепиллĕ çав япаласем кашниех ухă, ухă йĕпписем, сăнăсем, йĕннисенчен кăларнă хĕçсем тытнă. Çав япаласем пĕрре пăхсан этем пек уççăнах курăнаççĕ, тепре пăхсан курăнми пулаççĕ пек. Хĕрлĕ кĕрен пĕлĕте хирĕç хура пĕлĕт хăпарать пек, вăл пĕлĕт çинче те лашасем çине утланнă, аллисене хĕç-пăшал тытнă этемсем курăнаççĕ. Акă çак икĕ пĕлĕт çинчи этем кӳлепиллĕ япаласем пĕр-пĕрин çине вăрçă вăхăтĕнче эскадрон çине эскадрон тапăннă пек тапăнма тытăнчĕç. Эпир шикленнипе Турра пуç çапма тытăнтăмăр, çав патшалăхри çынсенчен çак япала мĕн пулни çинчен йăлăнса ыйтма тытăнтăмăр. Анчах çыннисем пиртен кулма тытăнчĕç: эпир мĕн хăтланнине тĕлĕнсе пăхса тăраççĕ.

Эпир çав икĕ отряд пĕр-пĕрин çине тапăнса пынине чылайччен сăнаса тăтăмăр: иккĕшĕ те вĕсем е тапăнса пырса вăхăчĕ-вăхăчĕпе пĕрлешсе каяççĕ, е вăхăчĕ-вăхăчĕпе пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ. Çав тавлашу-тытăçу хĕвел анса ларсан та чылай вăхăт тăсăлчĕ. Каярахпа тавлашу-суйлашу иртсе кайрĕ, пĕлĕтсем куçран çухалчĕç. Эпир çак япала мĕне пĕлтерни çинчен патшаран ыйтса пĕлме шухăшларăмăр. Вăл пире çапла каларĕ: «Асаттесем каланă тăрăх, çав пĕлĕтсем çине ырăпа усал чунсем тухаççĕ, вĕсем хăйсем пулса кайнăранпах çапла кашни каçах пĕр-пĕринпе тавлашаççĕ, тавлашмасăр пĕр каç та иртмест. Эпир вĕсене çапла кашни кунах куратпăр», — терĕ.

## 256

Çурçĕр шевли вылянине чăвашсем Турă ывăлĕ çуралнă вăхăт теççĕ. Тӳпе çуталсан кăвак хоппи оçăлать, çав вăхăтра пĕлĕт хапхисем сарăлаççĕ те кам та пулин çавна çĕр çинче курать. Ăна курни пысăк телей шутланать, мĕншĕн тесен ку вăхăтра Тӳпе ывăл çуратать. Ача çуралнă чухне каланă кирек хăш кĕлĕ, ӳкĕт те Турă патне лайăхрах çитет. Çапла шутласа, çынсем кăвак хоппи уçăлнă чухне çĕре выртса ырлăх ыйтаççĕ. Пуринчен ытларах вĕсем йышлă пыл хурчĕнни пек тулăх пурнăç пултăр тесе калаççĕ.

257

... Акӑ тата пирӗн чӑвашсем Кӑвак хуппи теҫҫӗ. Ҫав Кӑвак хуппине эпӗ те куртӑм. Лашасемпе выртма кайрӑм та шурӑм пуҫ ҫӑлтӑр тухиччен хурал тӑмалла пулчӗ. Сасартӑк кӑнтӑрлахи ҫутӑран та ҫутӑ ҫуталса кайрӗ те пӗтӗм тӗнче хӗвел тӗслӗ пулса тӑчӗ. Ним калама аптӑраса (господи) тесе юлтӑм. Пӗлӗт ҫинелле пӑхрӑм, пӗлӗт ҫинче чӑлт шурӑ вӗрен пек тӑратчӗ, вара пӗтрӗ. Ҫав ҫутта эпӗ Турӑ пулӗ теп. Ҫавӑн пек ҫутта пирӗн чӑвашсем Кӑвак хуппи теҫҫӗ, ҫав Кӑвак хуппи уҫӑлнӑ чух мӗн каланӑ, ҫавӑ пулать теҫҫӗ. Ӑна куракан сахал.

258

Пӗр ҫын питӗ чухӑн пулнӑ тит. Ун ним те пулман тит. Пӗррехинче ҫӗрле килтен тохать те кӳршӗ яла каять. Ҫутӑлас умӗн ҫап-ҫутӑ пулса каять тит. Вара ҫак ҫын ҫӗре ӳксе виҫ хутчен Турра пуҫҫапать те калать: «Турӑ, мана пуянлӑх пар», — тесе. Вара кайран пуйса каять. Малтан хӑй кӗтӳҫ пулнӑ.

259

Куҫа курӑнакан кӑвак пӗлӗте хытӑ-тӑр теҫҫӗ. Вӑл пӗлӗт тапхӑр-тапхӑр уҫӑлнине калаҫҫӗ, ҫӗрле е ирпе-каҫпа «кӑвак хуппи» уҫӑлнине курнисем пур теҫҫӗ. Ҫавна пирӗн «пӗлӗт уҫӑлать» теҫҫӗ. Кӑвак хуппи уҫӑлнине курсан, ҫав хупӑниччен мӗн кӑна ыйтса ӗлкӗретӗн, ҫавӑ пӗтӗмпе пулать тет, укҫа ыйтсан укҫа пулать тет; мул ыйтсан мул пулать тет; выльӑх-чӗрлӗх ыйтсан выльӑх-чӗрлӗх пулать тет. «Пӗр ҫӗклем нӑхта*!» — тесе каланӑ тет пӗри — пӗр ҫӗклем нӑхта панӑ тет. Ӑна кирек кам пурнӑҫӗнче те ӗмӗр тӑршшӗнче виҫҫӗ кӑна курӑнать теҫҫӗ, ҫав иккенне пӗлсе ыйтасне ыйтса ӗлкӗрмелле тет.

260

Кӑвак пӗлӗт хытӑрах тет, ҫавӑнпа та вӑл пӗрмаях уҫӑлмасть тет. Туррӑн ҫӗр ҫине пӑхас килсен ҫеҫ вӑл уҫӑлма пултарать тет. Ҫавӑн чухне вӑл хуть те мӗн ыйтсан та пама пултарать тет. Телей ыйтсан — телей, тырӑ-пулӑ лайӑх пултӑр тесен — лайӑх пулать тет, ҫумӑр ыйтсан — ҫумӑр парать тет.

261

Кӑвак пӗлӗт хыт кукар тет, ҫавӑнпа час-часах уҫӑлмасть. Туррӑн ҫӗр ҫине пӑхасси килсен ҫеҫ вӑл уҫӑлса хупӑнать тет. Шӑп ҫавна ӗнтӗ Кӑвак хуппи теҫҫӗ. Ҫан чох хӑвна мӗн кирлине ыйтсан ҫав порнӑҫланать тет. Эп хам ыйтса корман. Анчах пирӗн пӗр шӑллӑм лаша илесчӗ тесе каласа ӗлкӗрнӗ. Ҫав ҫол тырӑ лайӑх полчӗ, лаша та илтӗмӗр тырӑ сотса.

262

Кӑвак хуппи йӑлтӑр уҫӑлса каять теҫҫӗ. Ҫав кӑвак хуппи уҫӑлнӑ вӑхӑтра ҫие юлнӑ арӑмсем (беременные), ҫуралас ачисем хуть те мӗнле ҫын пултӑр тесен те каланӑ пек пулать теҫҫӗ.

---

* Йӗвен.

## 263

Кăвак хуппи уçăлсассăн кирек мĕн ыйтсассăн та çавă пулат теççĕ, каласа ĕлкĕрсен, хупăначчен. Кăвак хуппи уçăлсассăн кăнтăрлахинчен те çутă пулат теççĕ, çĕрти çӳппи-йĕппи пĕтĕмпе курăнат теççĕ.

## 264

Каçпа ăнсăртран куç умĕнче кăвак çутă çуталса илет. Çав вăхăтра: «Пĕр кĕлет тырă, пин тенкĕ укçа», — тетчĕç. Çав кăвак хуппине курнă вăхăтра çак сăмахсене каласа юлнă çынсем тулăх пурнăçпа пурăнма пуçлатчĕç. Çак сăмахсене каласа ĕлкĕрейменнисем кăвак хуппи курăннă вăхăтра мĕнле чухăн пурăннă, çавăн пекех пурăнатчĕç.

## 265

Кăвак хуппи вăл питĕ телейлĕ çынна анчах курăнать тет, пурне те курăнмасть тет. Кăвак хуппи ирхине çурăмпуç килес умĕн курăнать тет. Вăл сасартăк симĕсĕн-кăвакăн йăлтăртатса çиçĕм çиçнĕ евĕрлĕ курнать тет, анчах пит час пĕтет тет, пĕр минутрах пĕтет тет. Ăна куракан çын пĕтиччен мĕн те пулин кĕлесе* ĕлкĕрсен, вăл кĕлени пурте пулать тет. Укçа ыйтса ĕлкĕрсен — укçа, тырă-пулă ыйтса ĕлкĕрсен — тырă-пулă, выльăх-чĕрлĕх ыйтса ĕлкĕрсен — выльăх-чĕрлĕх пулать тет. Анчах хăшĕ ăна курсан хăраса нимĕн те ыйтмасăрах юлать тет. Вăл çынна вара нимĕскер те пулмасть тет. Çав кăвак хуппи телейлĕ çынна хăй ĕмĕрĕнче виçĕ тапхăр курăнать тет. Ак пит пуякансем çапла та пуяççĕ тет.

## 266

Мулпа пурлăха çынна Турă парать, анчах вăл çын хăй тăрăшнинчен килет. Этем малтан чухăн пулнă, кайран майĕпен пуйма тытăннă. Кайран пуяннисене çĕрме пуян теме те пуçланă. Ярмак пуян каланă пулать: «Эпĕ кăвак хуппи уçăлнă чух мана Турă кăшт тыткаламалăх укçа патăр тесе каларăм, çавăльтен вара эпĕ çĕкленме тытăнтăм, халĕ манăн хама тыткаламалăх укçам пур».

## 267

Кăвак хоппи çорконне пĕрре оçăлать тет. Вăл оçăлнă вăхăтра мĕн те полин калас полать тет. Вара мĕн ыйтнине парать тет.

Пĕрине ĕлĕк нохти кирлĕ полнă тет. Çав вăхăтра кăвак хоппи оçăлнă тет. Ку мĕн кирлине каланă тет те, кăвак хоппи вара кăна нохти айнех тонă тет.

Пĕр хресчен порăннă тет. Кăвак хоппи оçăлнă тет. Хресчене окçа кирлĕ полнă тет. Кăвак хоппи вара хресчене çав тери номай окçа панă тет. Чохăн хресчен вара пояна тохнă тет.

## 268

Çĕр çинчи тĕнчене Тĕнче турри тытса тăрать, тĕрлĕ пайĕсене тĕрлĕ пĕчĕк турăсем пăхса пурăнаççĕ. Аслă Турă çынсене ĕненӳлĕх салатса пар-

* Ыйтса.

са, çĕр çинчи ĕçсенчен пăрăнса тăнă. Хăçан камран кăна — çĕр çине ансан е пĕлĕтренех çынсен пурнăçĕ çине пăхкаласа илнĕ.

Кăвак хоппи уçăлсан пăхать теççĕ Торă çĕр çине. Кăвак хоппи уçăлнине курнă çын Турăран мĕн ыйтсан та пурнăçланать. Çапла, пĕр чăваш Турăран пăру пăявĕсем пĕр çĕклем пама ыйтнă. Унăн вара майракаллă выльăхсем питĕ ĕрчесе кайнă.

## 269

Пĕлĕт уçăлсан е кăвак хуппи уçăлсан этем ыйтнине Турă йалтах парать. Пĕррехинче вăрманта ут кĕтĕвĕ пăхакан ача кăвак хуппи вăхăтĕнче йĕвен пама ыйтнă. Турă ăна пĕр купа йĕвен панă. Çакăн хыççăн кĕтӳ ачине çынсем ухмах тесе ятланă, мĕншĕн тесен вăл çавăн пек меллĕ самантра мĕн те пулин пахарах япала ыйтма пĕлмен.

## 270

Пирĕнпе юнашар пурăнакан пускил пуйма шутласа пĕррехинче кăвак хуппине курсан: «Пĕр çĕклем нăхта!» — тесе кăшкăрнă тет. Вара Турă илтнĕ тет те, ку çын лаша илмессерен, лашине ӳкерсе вĕлерсе, нăхта хăварнă тет. Çапла вара çак çыннăн пĕр çĕклем нăхта пуçтарăннă тет.

## 271

Кăвак хуппи çулталăкра тăвата хутчен пулать. Çав кăвак хуппи чухне хуть те мĕн те пулин ыйтмалла тет. Пĕррехинче пĕр чухăн хресчен кăвак хуппи вăхăтĕнче лаша ыйтас вырăнне: «Сӳсмен пар!» — тесе кăшкăрчĕ тет. Унăн лаша çук пулнă. Вара лаша илет тет те, лаши вилсе каять тет, сӳсменĕ юлать тет. Каллех лаша илет тет, лаши вилсе кайса сӳсменĕ юлать тет. Çавăн пек çичĕ сӳсмене яхăн пухăнчĕ тет.

## 272

Пĕр çын питĕ чохăн полнă. Лаши те полман. Пĕрре çак çын лаша илет, анчах лаша кӳлме ун хăмăт полман. Вара çĕрле пасара тохса каять. Пасара çитме пит инче полнă. Тол çотăлас омĕн ку çын омĕнче тĕнче çап-çотă çотăлса каять. Ку тĕлĕнсе кайнипе ним калама аптрать. Вара: «Хăмăт», — тесе ярать. Кайран çак çыннăн хăмăтсем нумайланса каяç. Вăл хăмăт сотса поять.

## 273

Кăвак хуппи курсан мĕн те пулин ыйтмалла тет. Çапла вара пĕри пĕр михĕ ылтăн ыйтасшăн пулнă тет. Анчах та вăл «пĕр мих» теме кăна ĕлкĕрнĕ тет. Вара ун умне çӳлтен пĕр пушă михĕ ӳкрĕ тет.

## 274

Кăвак пĕлĕт хытă тет. Çав кăвак пĕлĕт Туррăн çĕр çине пăхас килнĕ чух уçăлса хупăнать тет. Пĕлĕт уçăлса хупăннине «Кăвак хуппи» теççĕ.

Кăвак хуппи уçăлса хупăннă чух хăвна кирлине:

— Мана çавна пар, — тесен мĕн ыйтнине пурне те парать тет.

Пĕри ĕлĕк тырă вырнă чухне ним ыйтма аптăраса:
— Мана кăвакал тапакки*, — тенĕ тет.
Тепĕр çул чăнах та пĕтĕм анипе кăвакал тапакки шăтса тухнă тет.

## 275

Кăвак хуппи уçăлнă чухне ăна куракан çын телейлĕ тет. Кăвак хуппи уçăлнă чухне кам мĕн ыйтать, çавă пурнăçланать тет.

Амăшĕпе хĕрĕ пурăннă тет. Хĕрне амăшĕ ăс парать тет: «Кăвак хуппи уçăлнă вăхăтра «Пĕр чĕрçи тулли телей пар тесе кала», — тет. Хайхи хĕрĕ васканипе кăвак хуппи уçăлнă вăхăтра: «Пĕр чĕрçи ача пар», — тесе каласа янă тет. Кайран унăн нумай ача пулнă тет.

Тепĕр çыннăн çав вăхăтра вутти пулман тет те, кăвак хуппи уçăлнă чухне: «Пĕр кил хушши вутă», — тесе каланă тет. Çав каçах çунса кайнă тет. Пĕр кил хушши вут сапаланса выртнă вара.

## 276

Çĕн çул каçĕ çур çĕрле тĕнче хапхи уçăлать теççĕ. Кам та пулин çав самантра мĕн ыйтма ĕлкĕрет, çавă пурнăçланать.

Пĕр пуян çапла майпа хăй керменĕ тавра никам кĕрейми хӳме çавăрма шутласа хунă.

Акă Çĕн çул каç шăпах çур çĕр тĕлĕнче тĕнче хапхи уçălса кайнă та, çĕре çемçе кăвак çутă çутатса илнĕ. Çакна каçранах кĕтсе тăракан пуян çапла кăшкăрса яма ĕлкĕрнĕ:
— Манăн шăтăк-çурăксем пурте йăлтах хупланччăр!
Вăл ĕмĕтленни йăлтах тĕрĕс пурнăçланнă. Унăн ӳт-тирĕ пĕр шăтăк та юлми хупланнă та вăл антăхса вилсе выртнă.

## 277

Кăвак хуппи пур тесе шутлаççĕ. Тулькĕ ăна телейлĕ çын анчах курат теççĕ. Ăна курсан часрах мĕн те пулсан ыйтмалла тет, ыйтсассăн ыйтнине веç парат тет. Пĕри шăтăкма, шăхăрма питĕр тесе каланă тет те, çăварне, сăмси шăтăкне питĕрсе янă тет. Вăл лайăх тумланашшăн пулнă тет.

Кăвак хуппи ак çапла пулат чăвашсен сăмахĕпе: пĕлĕт çинче кăн-кăвак арча уçăлса пĕлĕте çутатса ярат.

## 278

Хăш чухне тата пĕлĕт уйăрăлса каять тет, çӳлте чиркӳсем, хĕрессем курăнаççĕ тет, чан çапнă сассисем илтĕнеççĕ. Çавăн чухне Турăран: «Пире выльăх-чĕрлĕхлĕ, ачаллă-пăчаллă ту, укçаллă-муллă ту», — тесе ыйтсассăн, пурте пулать тет. Анчах вăл питĕ телейлĕ çынна анчах курăнать тет.

## 279

Тĕк тăмалăх вăхăтрах çĕрлесенче (çулла та, хĕлле те) сывлăшра çиçĕм çиçнĕ пек симĕсĕн-кăвакăн пулса каять. Чăвашсем ăна кăвак хуппи уçăлать

* Чăрăш тăрри курăк.

теççĕ. Çав кăвак хуппи уçăлса хупăннă вăхăтра мĕн ыйтнă çав пулать тет, укçа ыйтсан — укçа, выльăх ыйтсан — выльăх, тырă ыйтсан — тырă. Ĕлĕк пĕр çын кăвак хуппи уçăлса хупăннă вăхăтра лаша парĕ тесе пĕр ытам нăхта ыйтнă. Ку чăнах та пĕр ытам нăхта тупать тет. Тата тепĕр чухăн çын çĕрле çулпа пырать. Кунăн çынна парас парăмсем нумай пулнă. Парăмсене вăл нимĕнпе тӳлеймен, çавăнпа питĕ хуйхăрнă. Акă ку çулпа пынă чух кăвак хуппи уçăлса хупăнать. Çулпа пыракан çын парăмсене тӳлемелле пултăр тесе: «Шăтăкăм-шăхăрăм питĕрĕнтĕр!» — тесе кăшкăрать. Ку çыннăн парăмĕсене тӳлесси пулмасть, хăй илтми-курми, тула тухайми пулса вилет.

## Çилпе тăвăл. Çавра çил

*Чăваш халăхĕ Аслă хăват вырăнне хисеплекен тăватă вăйран пĕри — Сывлăш (Çил, Пĕлĕт). Пĕтĕмĕшле ку хăват Çил сăнарĕпе палăрса юлнă. Çил турри паллă турăсем ретĕнче тăрать, ăна пур йышши чӳксенче те асăнаççĕ. Çил турри пĕлĕтĕн çӳлти çиччĕмĕш сийĕнче çӳрет, унăн пысăк йышĕ, ачи-пăчи Сăрт-ту леш енче пурăнать.*

*Авалхи хайлаллă халапсенче çилсен турри пайрăм ятпа çӳренĕ. Каярахпа унăн ячĕ манăçса пынă. Кĕçех Çилпе, Тăвăлпа, Çавра çилпе турăсем мар, этем хăй кĕрешме пуçланă. Çавăн çинчен Çил çулĕпе шăтăкĕ е çăварĕ умĕнче Çил Амăшĕ — карчăк ларни каласа парать. Çил Амăшĕ суккăр пирки Çил çăварне вăхăтра уçса-хупса тăраймасть. Вăрах хушă шăтăка хупмасăр тăрсан Çĕр çине Тăвăл, Çавра çил килет. Тăвăл чухне Çил ачисем алхасса каяççĕ.*

*Çавра çил те ырă-усал ачисем ашкăнса çӳренĕрен пулать теççĕ. Вĕсене чармалли мелсене этем пĕлет имĕш. Çил чĕлхине каласан, тимĕр япала пăрахсан вăл саланса каять. Ахăртнех, кунта ĕмĕртен сăнаса пынă ăслăлăх та пур пулĕ: тимĕр пуртă, хĕç, сăнă çил çавринчи туртăм вăйсене (электричествăна) çĕре кĕрсе кайма май панă, çавра туртăма арканма пулăшнă. Нумай чухне çав тимĕрсем хĕрелсе ларнине («юнланнине») калаççĕ. Ахăртнех, çакă тимĕр çунăкланса юлнипе çыхăннă.*

*Çавра çилĕн пуçĕ, хӳри, варри пур. Çынсем Çавра çилĕн пуçĕпе варрине тимĕр юпа витĕр кайма ыйтнă. Çавăнпах çӳллĕ çуртсен тăррине тимĕр лаша, автан, хĕвел паллисем лартса хăварма, çурт çамкине тимĕр шăчă яма тăрăшнă.*

**280**

Авалхи тĕн йĕркисенче чăвашсем Çиле Турă вырăнне хурса хисепленĕ. Пĕр енчен, çил-тăвăл кăларакан пĕлĕте Турă тĕнче тӳпинчен çӳлерехре, аялтан шутласан çиччĕмĕш сие вырнаçтарнă пулать. Тепĕр енчен, Çил йышĕ тĕнче хĕрринче, сăрт-ту леш енче пурăнать тенĕ. Çав сăрт-ту витĕр тухса çӳреме çил таврашĕсем валли çын тути евĕр шăтăк пур иккен. Сăрт-ту хушшинчи çил тутине пĕр карчăк сыхласа тăрать тет. Пĕр чух çил тутине пăкăлать тет, тепĕр чухне уçса ярать тет. Çĕр çине вара е лăпкă çил, е хаяр çил вĕçсе тухса каять тет.

281

Ҫил амӑшӗ суккӑр тет. Вӑл ҫилӗн тӗнни умӗнче ларать тет. Суккӑрскер, аранҫӑ ҫил вӗртес тесе, тӗннине уҫма тытӑнать тет те тӗнӗ хуппине пӗтӗмпе туртса кӑларать тет. Ҫил шавласа тухса кайса вара пӗтӗм тӗнчере урса ҫӳрет тет. Ҫил амӑшӗ тӗнне хупас тесе шырать-шырать тет, анчах нимӗнле те тупаймасть тет. Унтан аран тупса тӗнне хупса хурать тет, вара ҫил чарӑнать тет.

282

Ҫил тухакан ҫӑвар пур тет, ҫав ҫӑвар кутӗнче карчӑк сыхласа ларать тет, вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе ҫав карчӑк ҫил ҫӑвар пӑккине уҫса пӑхать тет те, хӑш чухне туххӑмах питӗрсе лартать тет, тепӗр чухне ҫил питӗ вӑйлӑ пырса ҫапӑннипе нумайччен питӗреймесӗр тӑрать тет. Ҫапла карчӑк ҫил ҫӑварне питӗреймен чухне ҫӗр ҫинче ҫил вӑйлӑ пулать тет вара.

283

Ҫилпе суккӑр карчӑк хуҫаланнӑ. Вӑл Ҫил шӑтӑкне темлерен уҫса янӑ та нимпе те хуплаймасӑр хӑшкӑлнӑ. Ҫавӑнпа чӑвашсем: «Ах, ку Ҫил шӑтӑкне мунчалапах кайса чикесчӗ», — теҫҫӗ.

284

Ҫил амӑшӗ. Ҫил амӑшне Торӑ хопса лартат теччӗ; вӑл ӗҫерӗнсе кайсан ҫил пит войлӑ полат.

285

Ҫил-тӑвӑла ӑна халӑх усалланнсан Турӑ ярать теҫҫӗ. Ҫил хапхине Турӑ уҫать тет те, вара ҫил-тӑвӑл пулать теҫҫӗ. Ҫавӑ анчах хӑратать ҫынна. Унсӑрӑн этем чарӑнас ҫук теҫҫӗ, а Турӑ хӑвачӗ хӑратать.

286

Чӑвашсем ыйтсан Ҫил уй-хире пулӑх кӳрекен варкӑш ярать.

287

Этемпе Ҫил тавлашнӑ тет: хӑшӗ вӑйлӑрах? Этемми: «Эсӗ мана ҫӗнеймӗн», — тесе калать тет. Ҫилӗ калать тет: «Ҫӗнетӗп». Ҫынни тимӗр юпа лартрӗ тет. Тапранчӗ тет ҫил анӑш-тӗнӗш. Ҫаврӑнать тет тимӗр юпа тавра — ниепле те ӳкерейместь тет. Ҫавӑрна-ҫавӑрна ҫунаттисене хӑй йӑлт хуҫса пӗтерчӗ тет. Ҫил пӗрре те пулми пулчӗ тет ҫунаттисене хуҫнӑран. Тӗнче шӑршланчӗ тет. Каллех Турӑпа Пӳлӗх ҫил шырама тухаҫҫӗ тет. Тупрӗҫ тет те ҫиле, тин каллех ҫил тухакан пулчӗ тет.

288

Ҫил-тӑвӑла Турӑ ярать этемме пӑртак хӑратма, унсӑрӑн этем Турра манать. Ҫавӑ тӑвӑл вӑхӑтӗнче Турӑ ҫил хапхине уҫать тет пысӑкрах, вара ҫил-тӑвӑл тухать тет. Ӗлӗк пӗр вӑхӑтра Ҫил, Вут, Шыв пӗр-перинпе тав-

лашнӑ, кам та кам пӗр-пӗрне хӑшӗ ҫӗнтерӗ терӗҫӗ тет. Ну хай Ҫил Вута та, Шыва та парӑнтарчӗ тет. Вут вара чул ӑшне кӗрсе тарса аран хӑтӑлнӑ, ҫавӑнпа чулран вут тухать ҫулупа ҫапсан теҫҫӗ.

**289**

Ҫил чӗлхине ӑна ӗлӗк хурт усракансем пӗлнӗ тесе калаҫҫӗ. Вӗсем хурт картине ҫил лексе пыл тӑвакан хуртсене вӗлле ҫумне ҫаптарса амантнӑран, икӗ йывӑҫ пӗр ҫӗре ҫыхӑнса ӳснӗ йывӑҫсене хурт картине лартса ҫав ҫил чӗлхине каланӑ тет те, вара ҫил хурт картине лекмен тет.

**290**

Нумайтарах ҫумӑр пулмасӑр тӑрсан усалсем питӗ аса пуҫлаҫҫӗ тет. Вӑл Ҫавра ҫил ӑшӗнче, майра евӗрлӗскер, усал ларса ҫӳрет теҫҫӗ, сараппанне вӑркӑштарса ҫавӑрса пырать тет. Усалсем ҫанталӑк уяр тӑнӑ чухне туй тӑваҫҫӗ тет, хӗр парса хӗр илеҫҫӗ тет. Ҫавӑнпа уяр ҫанталӑкра Ҫавра ҫил нумай пулать тет. Тата вӗсем Ҫавра ҫилпе пӳкле вилнӗ ҫын патне каяҫҫӗ тет.

**291**

Ҫавра ҫил ӑшӗнче усал пур теҫҫӗ, ҫавӑнпа тимӗрпе персен юн тухать теҫҫӗ. Ҫавра ҫил ӑшӗнчи усалӗ мӑн сӑмсаллӑ тет. Сӑмсипе ҫӗре нӑшт-нӑшт вӗрсе пырса тусан вӗҫтерет теҫҫӗ.

**292**

Ҫавра ҫилпе усал ҫӳрет, ун ҫине сураҫҫӗ, аяккалла кайма калаҫҫӗ. Ӗлӗк пӗри Ҫавра ҫиле пуртӑпа тата ҫӗҫӗпе пенӗ. Ҫав ҫынна Ҫавра ҫил каланӑ: «Ладно пӗкӳрен* тиврӗ, пуҫран тивнӗ пулсан хӑна та ҫавӑрса хӑпартса каяттӑм», — тенӗ.

**293**

Ҫавра ҫил вӑл усал сывлӑш, унпа Усал ҫӳрет теҫҫӗ. Кӑҫта ҫын шыва кайса вилет е ҫакӑнса вилет, е эмел хыпса вилет, ҫавӑн пек ҫӗре каяҫҫӗ тет вӑл ҫавра ҫилсем. Ҫавра ҫил ҫине ҫӗҫӗ персен е икке уйӑрӑлса каять, е саҫҫем** пӗрлех каять тет.

**294**

Ҫавра ҫил — таса мар шульӑш. Ӑна хирӗҫ пуртӑ е ҫӗҫӗ пемелле, унсӑрӑн вӑл ҫын ҫине персе амантса, ватса, усал туса хӑварма пултарать.

**295**

Пирӗн кунта ҫавра ҫил ҫинчен акӑ ҫапла калаҫаҫҫӗ. Пӗр ҫын тырӑ акать тет, ҫакӑн патне пӗр Ҫавра ҫил пырса перӗнчӗ тет, хайхискер Ҫавра ҫиле кунтӑккипе печӗ тет. Кунтӑккине Ҫавра ҫил таҫта ҫитичченех илсе

* Пӗкӗрен.
** Совсем, начах.

кайрĕ тет, ку çын кунтăксăрах тăрса юлнă. Çав кунтăка Çавра çил урăх çын тырă акакан çĕре кайса пăрахнă тет. Вăл çын вара çав кунтăк пырса выртнинчен тĕлĕнсе кайнă, хăрана пулсассăн та çав кунтăка илсе тырă акнă тет. Çав кунтăкпа акнă тырă ăраснах лайăх пулнă тет, вăл çын унччен питĕ начар пурăннă тет. Çав кунтăкпа тырă ака пуçласан тырри лайăх пулнипе ураланса карĕ тет.

## 296

Çавра çилпе çын çӳрет теççĕ. Ĕлĕк пĕр килте амăшсем уя тыр вырма кайнă пулать. Вĕсем çичĕ çулхи хĕр ачине киле хăварнă тит. Вара çав ача кăнтăрла кил карти варне выртса çывăрнă пулать. Вара Çавра çил пырса çавă ачана çавăрса йăтса илсе кайнă. Kaç пулсан ашшĕсем-амăшсем таврăнаççĕ, килте хĕр ачи çук, шыраççĕ — çук, темиçе кун ширанă — çук.

Пĕрре çавăн пек уйра тырă вырнă вăхăтра çынсем уя кайса пĕтсен, кăнтăрла тĕлĕнче, Çавра çил курăннă, унта çын пулнă. Çавра çилĕ вăрман урлă килнĕ те ял урлă каçса кайнă. Каçпа, киле таврăнсан, хайхи килте хĕр выртнине курнă, шап-шурă кĕпепе, темĕн чухлĕ тенкĕ (кĕмĕл) çакнă, хăйĕн аллинче тутăрпа çыхнă ылтăн пулнă. Хăй çывăрнă, ашшĕсем курсан пит хăранă. Килне кĕмесĕр çынсене чĕннĕ. «Пирĕн патра пĕр хĕр выртать, шап-шурă кĕпепе, темĕн чухлĕ кĕмĕл çакнă. Тата аллинче тутăр тытса выртать», — тесе каласа кăтартнă. Çынсем пухăннă, никам та кĕме хăйман, вара пĕр çын кĕнĕ тит те хĕре тăратса: «Эсĕ мĕнлескер кунта килсе выртнă?» — тесе ыйтнă. Хĕр каланă: «Мана ĕлĕк çичĕ çулта чухне Çавра çил исе карĕ, халĕ ĕнтĕ еççе хăварчĕ», — тенĕ. Çын унтан: «Сан ку тутăру çинчи мĕн?» — тесе ыйтнă. Хĕр каланă: «Ылтăн», — тенĕ. Вара ашшĕ-амăшĕ кĕнĕ, хĕр вĕсене курсан палланă, ун чухне хĕр 18 çула çитнĕ пулать, çапла хĕр пулса таврăннă пулать. Çавă хĕр калать пулать: «Çӳренĕ çĕрте патакпа та, çапуççипе те çапаççĕ, çĕçĕпе те переççĕ, вута-шыва та, вăрмана та, çаплăха та кĕреппĕр, çӳреме питĕ хĕн», — тесе каласа кăтартнă теççĕ ваттисем.

## 297

Çумăр çуманнин сăлтавĕ пӳкле вилĕмпе вилнисем: е эрех ĕçсе, е çакăнса. Вĕсен ăшне усал вăй кĕрет те вара çĕр çийĕн Çавра çил кăларса çӳрет. Типĕ çул çавăн пеккине асăрхама пулать, выçлăх çулĕсенче пушшех те. Типĕ ан пултăр тесе чăвашсем айăплă виле шăтăкне шыв сапаççĕ; çакăн хыççăн та çумăр çумасан вилене чавса кăларса шурлăхлă çĕре пытараççĕ. Кун хыççăн çумăр çăвать тесе ĕненет чăваш.

## 298

Çавра çиле ăна Шуйттан çавăрттарать тесе калаççĕ. Енчен те Çавра çил тухсассăн ăна хирĕç çĕçĕпе пемелле тет. Енчен те алă айĕнче çĕçĕ çук пулсассăн ăна: «Сенĕк тăрне пул», — тесе калаççĕ.

## 299

Çавра çил юпаланса хăпарсан таса мар вăй алхасать теççĕ. Çав юпа ăшне тимĕр япала пăрахсан ăна юн витет, вара Çавра çил саланса каять.

**300**

Çуллахи кунсенче тăр кăнтăрлах килсе тухать çакă. Пĕр-пĕр çын Çавра çил пулса çӳрет. Кам та пулин ăна килĕшмесен е вĕсем йăнăш ĕç тусан çавсем патне кайса çаврăнать тет. Вара хăйпе пĕрле хăш-пĕр япалисене вĕçтерсе илсе тухса каять. Çавра çил пуçлансанах эпир: «Катăк пуртă, катăк çĕçĕ», — тесе калаканччĕ. Вара хăех чарăнать, кайса çухалать.

**301**

Çавра çил варринче хĕр пырать теççĕ. Вăл хĕре курас тесен хăвăл турат куçĕ витĕр пăхмалла теççĕ. Пăхнă чухне питĕ вăрттăн пăхмалла тет, мĕншĕн тесен вăл хĕр пăхнине курсан пырса пуçран çапса чунсăр-чĕлхесĕр туса хăварать теççĕ. Çавра çил çине çĕçĕ ывăтсассăн çĕçĕ хĕре лекет тет те вара юнланать тет.

**302**

Çавра çил питĕ кăра кăмăллă. Вăл çилленсе кайсан пурне те çĕмĕрсе ватма пултарать. Ăна никам та çĕнтерме пултараймасть. Çавра çилĕн пуçĕ тата хӳри пур теççĕ. Енчен те эсĕ пурăнакан çĕре çилĕн пуçĕ лексен нимĕн те юлмасть. Хӳри ун пекех вăйлă мар тет. Çак çиле чарма та пулать тет. Пирĕн енче çапла калаç: «Пуртă тыт та Çавра çил ăшне кĕрсе лар, вара вăл чарăнать. Çавра çил касăлать, суранланать. Суранĕсенчен юн сăрхăнать».

**303**

Çавра çиле тухатмăш-асамçă çын çавăрса çӳрет пулать, çавăнпа Çавра çил ăшне çĕçĕ-мĕн ытсан тăрăнат пулат. Пирте халап пур. Пĕр çын Çавра çиле ывăтнă та, çĕçси çухалнă. Пĕр виçĕ уйăхран ку сутта кайнă та хăваттире сывăрма кĕнĕ, унта ку хăйин çухалнă çĕççине паллать. Ку ыйтат: «Ăçтан тупрăн ку манăн çухалнă çĕççе?» — тет. Хваттер хуçи калат: «Ху мана çавăрса иртсе кайнă чух çĕçĕ ывăтрăн та мана çурăмран тăрăнчĕ, — тенĕ тет хăйин çурăмне кăтартса. — Тьфу! Тьфу! ăçтан килнĕ, çавăнтах ху çулупа кай», — тесе каланă тет.

**304**

Çавра çил те усал. Вăл уяр çанталăкра нумай курăнать. Вот уна курсан тӳрех çынсем калаççĕ: «Тимĕр сенĕк тĕлне пул, катăк пуртă тĕлне пул», — теççĕ.

Ĕлĕк пĕр старик çул çинче пырать тет. Ăна хирĕç кусса пыракан Çавра çиле старик çĕçĕпе пенĕ, çĕçĕ çухалнă. Хайхи старикĕн вăрăм çула лашапа каймалла пулнă. Каç пулса килнĕ, старикĕн яла выртма кĕмелле пулнă. Пĕр пĕчĕк краççын çути курать те ыйтать: «Хваттер ямăн-ши?» — тет. «Ярас», — тет хуçи. Хайхи старик лашине тăварать. Ăна хуçи апатланма лартать. Çăкăр касать тет, хайхи çĕçĕне старике кăтартать: «Çак кам çĕçси? Çĕçĕпе петĕн те, эпĕ ăна илтĕм», — тет.

Çапла калать те хваттер хуçи çухалать. Старик пĕчченех ларса юлать. Вăл пӳртре те мар, уй варринче лашине тăварнă пулнă, хăй çуна çине ларнă пулнă. Ăна Çавра çил (усал) çухатса янă пулнă. Вара старик тепĕр хут лаша кӳлсе чиперех киле çитнĕ.

## 305

Çавра çил çине çĕçĕ пăрахсан Çавра çил пĕтет тет. Çавра çил вăл Сурăмран, Етĕрне уесĕнчен тухса килет. Етĕрне уесĕнче питĕ сĕмсĕр, выçă, ĕмĕтсĕр Сурăм ятлă çын пулнă тет. Унăн тăватă ывăл пулнă тет. Мишевĕштĕк* çĕр валеçме килсен вăл лайăххах çĕре нумайрах илсе тăватă ывăлне те вăрмана лайăх çĕре ертсе кайнă та хăйне мĕн чухлĕ кăмăл килнĕ, çавăн чухлĕ çĕр йышăнса, тăватă ывăлне, тăватă кĕтесе шăтăк чавса пытарса лартнă тет. Мишевĕштĕкпе ытти халăх ăна çав çĕре парасшăн пулман. Вара Сурăм: «Çĕр йышĕнчен ыйтăр, вăл мĕн калĕ», — тесе каларĕ тет. Пĕр кĕтессине пыраççĕ тет те: «Ку кам çĕрĕ?» — тесе ыйтаççĕ тет. Çĕр айĕнчен: «Сурăмăн!» — тесе кăшкăрать тет.

Çапла йĕри-тавра ыйтса çаврăнчĕç тет, пур кĕтесре те: «Сурăмăн!» — тесе кăшкăрчĕç тет.

Йышăннă çĕре пĕтĕмпех Сурăма пачĕç тет.

Мишевĕштĕк кайсан Сурăм ачисене чавса кăларса пăхать тет, ачисем пурте кĕл пулса кайнă тет. Çил килчĕ тет те çӳлелле пĕрĕхтерейсе вĕçтерсе кайрĕ тет. Çавăнтан вара Çавра çил пуçланса кайнă тет.

Ют ялсем, Сурăм хурăнташĕ, ана çинче апат çисе ларнă чухне Çавра çил кĕрлеттерсе пычĕ тет. Ку ун çине çĕçĕпе ывăтрĕ тет. Çавра çил: «Ай! ай!» — тесе хăпарса кайрĕ тет. Пăхать тет — çĕçҫи те çук тет.

Хĕле кĕрсен теплерен çак çыннăн Сурăм патне каймалла пулнă тет. Сурăм патне пырса кĕрсен сĕтел çинче хайĕн çĕççине курах кайрĕ тет. «Ара, Сурăм хăта, ку ман çĕçĕ-çке!» — тесе каларĕ тет. Лешĕ те: «Çĕççӳ пулин, ил, чут чикĕнсе вилмен-ха унпа ман пĕр ачи, хĕввине тăрăнса анчах юлнă», — тесе каларĕ тет.

## 306

Çавра çил вăл çынах тет. Çил çаврăнсан çĕçĕпе пемелле тет. Вара вăл тӳрех çухалать тет. Пĕри пенĕ тет те, çĕçҫи тӳрех çухалнă тет. Кайран хăйĕн çĕççине пĕр вырăс аллинче курнă тет.

Праçникре ĕçлемелле мар, Çавра çил илсе каять тет. Пĕр хĕрарăм мăнкунта ĕçленĕ. Çавра çил тухнă тет те пирне çавăрттарса шыв хĕрне кайса пăрахнă тет.

## 307

Пĕр çын суха тунă. Ун çине Çавра çил пынă. Вăл хăранипе ним тума пĕлмесĕр кушилрен çĕçĕ илет те перет. Çавра çил иртсе кайсан хайхи çын çăкăр çĕçҫи шырама тытăнать. Анчах тупаймасть.

Хĕлле пулсан ку çын хулана тырă сутма каять тет. Хулара пур хапха та хупăнса тăрать, пĕр çыннăн хапхи çеç уçă тет. Вăл вара çавăнта кĕрет те тыррине сутать. Тыррине турттарса пĕтерсен хуçи патне укçа илме пӳрте кĕрет. Хуçи апат çисе ларнă-мĕн. Çавăнтах сĕтелли çинче ана çинче пенĕ çĕçҫи те выртать тет. Хуçи кăна калать: «Эсĕ хăвăн çĕççӳне палларăн-и? Çак камăн çĕçҫи?» — терĕ тет. Лешĕ калать: «Манăн», — тет. Хуçи: «Эсĕ астуса ил-ха çулла мана епле пенине. Çавăн чух эсĕ манăн сулахай хăлха-

* Çĕр виçекен.

на лексе кастартӑн», — тет. Ҫавӑнтах вӑл хӑлхине кӑтартрӗ тет. Унтан кӑна тырришӗн кирлӗ таран укҫа пачӗ тет.

Ку укҫине илет те лашине кил картинчен ҫавӑтса тухать. Ларас умӗн каялла-малалла пӑхать — нимӗн хули те ҫук, ҫырма варринче тӑра парать тет. Вара хӑранипе пӗтӗм сехри хӑпнӑ тет. Ҫавӑнпа халӗ Ҫавра ҫиле тырӑ вырнӑ чух ҫурлапа, утӑ ҫулнӑ чух ҫавапа, тислӗк купи салатнӑ чух сенӗкпе е тимӗр кӗреҫепе переҫҫӗ.

## Ҫумӑр. Юр. Сывлӑм

*Ҫумӑр ҫинчен калакан тӗрлӗ сӑмах сахал мар, анчах авалхи хайлаллӑ халапсем ҫукпа пӗрех. Юрпа пӑр е сывлӑм халапӗсем те хайла-халапра анлӑ сарӑлман. Ахӑртнех, ансат йӑлапа пурӑнакан ҫынсемшӗн вӗсем пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулман, мӗншӗн тесен кӑнтӑрти ӑшӑ ҫӗршывсенче юрпа пӑр ӑнсӑртран кӑна ӳкме пултарнӑ.*

### 308

Пӗррехинче улӑпсем сунара тухса каяҫҫӗ. Вӗсем унта питӗ хытӑ ывӑнаҫҫӗ. Каялла киле килнӗ чух пӗлӗтсем ҫине канма выртаҫҫӗ. Пӗр улӑпӗ ҫывӑрсах каять. Кайран вӑл тӑрса пӑхать те — юлташӗсем ҫук, вара чӑтайманнипе макӑрса ярать. Унӑн куҫҫулӗнчен ҫумӑр пулать. Кайран пӗлӗтсем ҫийӗн кайла-майла чупкалама пуҫлать. Пӗлӗтсем хыттӑн катӑла-катӑла каяҫҫӗ. Ҫавӑнтанпа ӗнтӗ аслати кӗмсӗртетме, ҫиҫӗм ҫиҫме тытӑнать.

### 309

Пӗр килте ача ҫуралнӑ. Ашшӗпе амӑшӗ ӑна йӑла туса ят хурас тесе ҫӳренӗ. Кусене хирӗҫ пӗр шап-шурӑ сухаллӑ ватӑ ҫын тухнӑ та:

— Ӑҫта каяттӑр? — тесе ыйтнӑ.

Лешсем:

— Ача тӗне кӳртме каятпӑр та, пирӗн хреснашшӗ ҫук. Эсӗ пулмӑнши? — тенӗ.

Ватти хавас тунӑ, ачана тӗне кӳртнӗ. Ача ҫитӗнет. Пӗрре урамра вылянӑ чух унтан пӗри: «Сан пускаҫу кам?» — тесе ыйтнӑ.

Лешӗ:

— Пӗлместӗп, — тенӗ. Юлташсем пурте кулса янӑ. Ача вӑтанса пӳрте кӗнӗ, ыйтма тапратнӑ. Амӑшӗ ӑна каласа кӑтартнӑ. Вара ача ашшӗсенчен вӑрттӑн пускашшӗне шырама кайнӑ.

Ҫулпа утса пынӑ чух хутаҫ ҫакса хирӗҫ пыракан пӗр ватта курнӑ. Ватти унран ӑҫта каян тесе ыйтсан вӑл:

— Пускатти* патне каятӑп, — тенӗ.

Пуҫтарса ҫӳрекен кӗлмӗҫ:

— Сан пускаҫу — эпӗ, ман пата пырас тетӗн пулсан куҫна хуп, — тенӗ.

Ача куҫне хупнӑ. Уҫсан пӗр пит кетмер** пӳртре тӑнине курнӑ тет.

---

* Пысӑк атти — хреснатте, кумати.

** Капмар.

Пускашшĕ ăна хăйĕн пӳлĕмĕсене кăтартса çӳренĕ. Пĕр пӳлĕмре ача ала çинче такана ларнине курнă. Патнерех пырсан ала витĕр пăхнă та халăх хĕрсе тыр вырнине курнă. Вăл халĕ пĕлĕт çинче пулнă. Ача тĕлĕнсех кайнă. Астумасăр такана çине пуснă та — таканаран шыв тăкăннă кайнă, ала витĕр юхса, çумăр пулнă. Халăх хыпаланса кĕлте йăтма тапратнă. Ак мĕнтен пулать çумăр.

### 310

Вишнин* вĕтĕ çулçăллă турат пур, çав туратпа питĕ хытă чупмалла. Вара çил тухать те, çумăр çăвать.

### 311

Нумай вăхăт хушши çумăр çумасăр тăрсан вилнисем хăйсен юлашки шывне кăларса çĕр çине çиеле сапаççĕ тет. Çапла калаççĕ сапнă чух: «Чĕррисем курччăр, атту пирĕн шыв пĕтсе çитрĕ». Вилнисене шыв нумай кирлĕ. Çавăнпа çумăр нумай çумасăр пурăнсан ваттисем масар çине кайса вил тăприсем çине шыв сапаççĕ.

### 312

Пӳкле вилĕмпе вилнĕ çыннăн ӳчĕ хирте выртсан çумăр çичĕ ялта пулмас тет; çын вилли вăл пит шывшăн çунать тет, çавăнпа вăл çумăр киле пуçласан çумăра хирĕç каять тет, çумăр çын виллинчен хăраса урăх çĕрелле пăрăнса каять тет.

### 313

Нумай вăхăт хушши çумăр çумасăр тăрсан хресченсем çумăр хуçине пуççапма хир варрине ялĕпе тухнă тет. Пĕррехинче çапла пĕр уйăх тет çумăр çумасть. Тарасасенче, çырма-çатрасенче пĕр тумлам шыв та çук тет. Кӳлĕсем те типе-типе ларчĕç тет. Вара ватти-вĕтти пуçтарăнса пурте тухрĕç тет те аллисене çӳлелле кăнтарса йăлăнма пуçларĕç тет.

Çумăр хуçи клухуй тата кахал пулнă. Çапла вара вăл кунĕпе те çĕрĕпе çывăрнă çемçе пĕлĕт çинче. Вăл аялта мĕн хăтланнине те курман. Унтан вăранса кайса аялалла пăхать те куççульпе йăлăнакан хресченсене курах каять. Çавăн чух вара вăл тин тусан путармалăх çумăр ярса пачĕ тет.

Çумăр хуçин кăмăлĕ лайăх чух кунĕпех çумăр çăвать тет.

## Çумăрпа Юр

### 314

Юрпа Çумăр пĕртăвансем тет. Анчах та пĕррехинче çаксем хирĕçсе каяççĕ. Хăйсен вăйĕсене виçме пуçлаççĕ. Юрĕ калать:

— Эпĕ сана шăнтап, пăрлантарап, — тет.

— Çук, тăванăм, мана эсĕ шăнтаймăн, анчах та эпĕ сана ирĕлтерĕп, санран шыв кӳлленчĕкĕ тăвăп, — тет Çумăрĕ.

* Чие йывăççи.

Юр çума пуçлать. Ачасем савăнаççĕ, анчах ăшă Çумăр çума пуçлать, те Юр ирĕлме тапратать. Юрăн вăйĕ пĕтсе çитет, Çумăр çаплах вăйлă-ха.

Хĕвел хĕртсе пăхать, ăшă чунлă Çумăр ĕçе пикенет. Юрĕ хурланса йĕрет, юлашкинчен ирĕлсех каять те çул тăрăх шарласа çырмасене юхса каять тет. Çавăнтан вара Юр нихăçан та хăйĕн шăллĕпе хирĕçмен тет.

## Сывлăм

### 315

Хĕвел пĕлĕтĕн хуçи; унăн ирхи шуçăм тата каçхи шуçăм пулнă. Ирхи шуçăмпа каçхи шуçăм килĕштермеççĕ.

Ирхин Сывлăм ятлă хĕр пулнă, каçхин Этем ятлă ывăл пулнă. Сывлăмпа Этем пĕр-пĕрне юратса пăрахаççĕ.

Сывлăм Этем патне аннă. Хĕвел хĕре йăпатса çапла каланă: «Сывлăм, эсĕ çĕр çинче Этемпе пурăнма тытăнатăн, сана йывăр пулать. Чуну санăн тăрă шыв тумламĕ пек сапаланса кайса ирсерен те каçсерен çĕр çине ÿкĕ», — тенĕ.

Çавăн пек каланă хыççăн çĕр çине ир те, каç та сывлăм ÿкнĕ.

# III. ÇУТ ТĔНЧЕ

*Хайлаллă шухăшлавра Çут тĕнче шутне Çĕрпе Шыв тата вĕсен тавраш**ĕ** кĕрет. Çынпа чĕрĕ чунсем пурте Çут тĕнчере пурăнаççĕ. Кунтах пĕтĕм кĕрешӳ, аталану, ырăсемпе хаярсен хутшăнăвĕ пулса иртет.*

*Çут тĕнчене Тӳпепе Пĕлĕт çинчен (Çӳлти тĕнчерен) Турăсемпе Ырăсем е вĕсен умĕнче тăраканĕсем килсе çӳреççĕ. Çут тĕнчене леш тĕнчерен Шуйттан е унăн ачисем, шыврисем тата ытти усал-тĕсел çитсе çаврăнать.*

*Çут тĕнче пулса кайни е ăна пултарни уçлăхĕпе пĕрлех пырать. Çĕрпе Шыв тавринче аталанакан Çутă тĕнчен сăн-сăпачĕ кăткăс. Çĕр чăмăрĕн тытăмĕпе пичĕ, шыв-шурĕпе пулли-сулли, ӳсен-тăранĕ, выльăхĕ-чĕрлĕхĕ, кайăкĕ-кĕшĕкĕ, çынсемпе халăхсем, чĕлхесемпе тĕнсем, çĕр çинчи ырăсем, хаярсем, усалсемпе тĕселсем, таса е вараланчăк вырăнсем пурте Çут тĕнче тытăмĕнче çаврăнаççĕ.*

*Авалхи çынсем Çут тĕнче пĕтме, арканма, инкек-синкек курма пултарасси çинчен нумай шухăшланă. Хайлаллă сăмахлăхра Ахăрсаман (тĕнче пĕтни), Хăямата каясси пирки каланă тĕслĕхсем паянчченех упранаççĕ. Вĕсем çинчен вĕрентни халăхăн кулленхи йăли-йĕркине кĕрсе юлнă, çавăнпа манăçа тухмасть.*

## ÇĔР ПИЧĔ

### Амаксар сăрчĕ

**316**

Халăхра сăваплăхĕ, чапĕ енчен Амаксар сăрчĕ пуринчен те паллăрах. Ку сăрт пуçĕнче Амаксар киремечĕ вырнаçнă. Кунтах тем тăршшĕ кӳлĕ. Амаксар е, тĕрĕссипе, Амаксар сăрчĕ тесе Амаксар кӳлли пулнăран каланă. Амаксар кӳлли Кай енчен хĕвел тухăçнелле çичĕ çухрăм тăсăлса выртакан ансăр кӳлĕ. Унăн хĕвел анăç вĕçĕнче Амаксар сăрчĕ вырнаçнă. Кӳлĕ сăрт тавра авăнса вĕçленет. Ку пăхма хăрушшăн хура курăнакан кӳлĕ тĕпсĕр теççĕ. Унта никам та шыва кĕмен. Кӳлĕре путнă çунасем çурçĕрелле самай аякра вырнаçнă Çуткӳлте тухнă.

Хăйăрлă Амаксар сăрчĕ 50 метр çӳллĕш. Унăн тӳпинче 2 аршăн ытла тăршшĕ, аршăн ытла тачкăш тунката ларать. Вăл ĕлĕк самай чаплă ешернĕ хыр юлашки. Кунта ытти йывăççем те пур. Ку хаяр киремет (эсремет) вырăнĕ. Йĕри-тавра тĕрлĕ япала выртать: çири кĕпе, ача кипкисем, çурта юлашкисем, вак укçа, хут таткисем, тухатмалли, асăнмалли пуканесем тата ытти те.

Çулла унта кутăн çакнă автан, кутăн çакнă чăхсем, кутăн çакнă арçын кĕпи, ал шăлли, çĕлен çип, улăм çурта (диаметрĕ 50 мм) курма пулнă. Тухатмăшсен тĕп ĕçĕ-хĕлĕ хыр тавра пулса иртнĕ. Этем çӳллĕшĕнче çав хыр ăшне шаларах хурарах пысăк турăш лартнă. Умĕнче чылай укçа выртнă.

### 317

Тахçан ĕлĕк Амаксар сăртĕнче пĕр тутар хĕр илсе каясшăн пулнă, лаша çине хăпартса лартма та ĕлкĕрнĕ. Хăтăлма ăнтăлакан хĕрĕ каччине, Амака, пулăшма чĕннĕ: «Амак, чар!» — тесе кăшкăрнă. Ку вара чупса çитсе тутарне вĕлернĕ. Кĕçех юлташĕшĕн тавăрас тĕллевпе тутарсем пухăнса килеççĕ. Вара вĕсене хирĕç Амак икĕ упа çури тытса кимĕпе Атăл урлă каçать. Тутарсем Амака курсан тĕлĕнсех каяççĕ: «Мĕнле-ха ку çын икĕ упаран та хăрамасть?» Шикленнипе вĕсем каялла тараççĕ. «Амак чар!» тенинчен ĕнтĕ Амаксар пулса кайнă.

### 318

Амаксар сăрчĕ сăваплă вырăн.

Çав сăртра тăватă хурăн кучĕ пур. Ку тăватă хурăна авалах темле карчăксем лартнă. Вĕсем кунта çынсене тухатас тесе шутланă. Çапла вара Амаксар киремечĕ пуçланнă.

Пĕррехинче ăнсăртран Амаксар кӳллинче çамрăк хĕр кĕтӳçĕ шыва кайса вилнĕ. Амăшĕсем вара çакна асăнса кунти чăнкă сăрт çинчи виçĕ юплĕ хыр çине турăш вырнаçтарнă. Çак йывăçăн вулли юпленнĕ вырăнта лартнă турăша пурте пуççапма пуçланăран Амаксар киремечĕ йĕркеленнĕ. Хĕрĕн ашшĕ çармăс тата хăй те кĕтӳçĕ пулнă пулмалла.

### 319

Кушкăра ĕлĕкрех пĕр Сипет ятлă çын пулнă. Çав Сипетĕн çемйи пĕтĕмпе вилсе пĕтнĕ, вĕсене пурне те пĕр çĕре ял масарĕнчен уйрăм пытарнă. Вĕсене пытарнă вырăна Сипет тӳпи тенĕ, халĕ те вăл вырăна çапла калаççĕ. Вĕсем мĕнле вилĕмпе вилнине никам та пĕлмест, вĕсен хăйсен хыçĕнчен вĕсене асăнса хывакан йăх-тĕп юлман. Çав Сипет тӳпинчен ял-йышсем хăраса тăнă: çавăнта выртакан «камалсăр вилесене» хывмасан çумăр çумасть тенĕ. Çавăнпа çав вилесем çине ял-йышсем кая-кая хывнă. Унтан учук тепĕр кунне учукра чӳклеме пуснă ĕне тирĕ суттипе илнĕ эрехрен пĕрер штух (штоф) кама та пулин парса çав вилесене хывма янă. Халĕ ĕнтĕ Сипет тӳпине пĕчĕкçĕн-пĕчĕкçĕн сухаласа пĕтереççĕ; ĕнтĕ çерем аранçĕ кăна юлнă.

## Шыв-шур таппи

### 320

Пĕтĕм Чăваш çĕрĕ çинче çичĕ пĕртăван кӳлĕ пулнă. Вĕсем вăйлă çилтăвăл кăларса шыва пĕлĕте хăпартнă, вăйлă çумăр çутарса пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ. Çавăн пеккисенчен пĕри Эл кӳлли пулнă. Пĕррехинче типĕ пуçланнă. Çав вăхăтра Эл кӳлли тĕлне тутар çарĕ килсе тухнă. Вĕсем ялсене çаратнă, çунтарнă, пуянлăха, выльăх-чĕрлĕхе туртса илнĕ, хĕрарăм-

семпе хĕрсене тыткăна илнĕ, ял халăхне вĕлернĕ. Хăшĕ-пĕрисем вăрмана тарса хăтăлса юлнă. Пĕр Суваш ятлă ватă старик вăрманти халăха пуçтарса Эл кӳлли патне илсе пынă. Вĕсем Эл кӳллине тихапа чӳкленĕ, çумăр ятăр, хаяр тăшмансенчен хăтартăр тесе кĕлтунă. Сасартăк унтан та пулмас аслати авăтнă, çил-тăвăл тухса кӳлĕри шыва хура пĕлĕте хăпартнă, нихçан пулман вăйлă çумăр тăка пуçланă. Вăл çулсемпе шурлăхсене путарнă, кунĕпе те çĕрĕпе виçĕ кун çунă. Çав вăхăтра тутар çарĕ вăрман витĕр вăрланă пурлăхпа, выльăх-чĕрлĕхпе вăхатлăх чарăннă вырăна çул тытнă. Çил-тăвăллă çумăр вĕсене те хăвaласа çитнĕ, тутар çарĕ вара шурлăхра путса вилнĕ. Çакăн хыççăн ватă старик Суваш хăйĕн йăхне тăсакансене вăрмансене хӳтĕлеме, сыхлама пилленĕ, кашни çуркунне Эл кӳллинчен çынсем валли ырлăх ыйтса çимĕççем ăнса пулччăр тесе чӳк тума хушса хăварнă.

## 321

Ĕлĕк-авал Эл кӳл вырăнĕнче çаран пулнă теççĕ. Çав Эл кӳл вырăнĕнче аякри чăвашсем çаран çулнă чухне утаманĕ виçĕ лашапа пычĕ тет те утă çулакансене сирĕлме хушрĕ тет. Çынсем сирĕлсессĕн утаманĕ куçран çĕтрĕ тет. Вара çаран вырăнне шыв тухса тулчĕ тет.

## 322

...Эл кӳлли пирĕн патăртан хĕвел анăç енче, çавăнпа о енчен çăмăр тохсан Эл кӳллинчен тохрĕ теç. Кĕш чох çав Эл кӳлли енчен пăрлă çăмăр килсе пĕтĕм посса-ватса каять. Он чох вара Эл кӳлли çилленнĕ теç. Эл кӳлли ан çиллентĕр тесе ăна путяк параç. Эл кӳлли çăмăра пилпе панă çол тырă пит аван полать теç.

## 323

Пирĕн ялтан кăнтăрлапа хĕвел анăçĕ хушшинче пĕр Эл кӳлли ятлă кӳлĕ пур. Пирĕн таврари чăвашсем çав кӳлĕрен çăмăр тухать тата пăр çăвас пулсан та çавăнтан тухса çăвать теççĕ. Çак кӳлле авалхи çынсем кашни çулах тырă-пулă лайăх пултăр, тырă аксассăн, тырă çăмри кăларса ятăр, çĕр çăмăрсăр типсе, хăрса ан кайтăр, тырра-пулла пăр ан çаптăр тесе шур ĕне панă тет.

## 324

Эл кӳлли вăл Элпуç ялĕ патĕнче, пирĕн ялтан кăнтăрла енче пĕр çирĕм пилĕк çухрăмра.

Эл кӳллин пĕр хĕрри сăртлă, вăрманлă, тепĕр хĕрри елӳ. Эл кӳллине тĕпсĕр теççĕ. Хĕлле те варри шăнмасăр тăрать, пĕтĕрĕнсе-çаврăнса тăрать.

Эл кӳлли вырăнĕнче улăх пулнă тет. Унта утă çулаççĕ тет. Утă çулнă чух улăх тăрăх туй кĕрлеттерсе пырать тет. Шăпăрсемпе, купăссемпе, параппан çапса юрласа пыраççĕ тет, юлан утсемпе. Пуян туйĕ тет. Юнтан тăвансене авлантарнă тет амăшĕ мулĕ çынна юласран хăраса. Утă çалакансем патне çитсен туй чарăнчĕ тет те, халăх сирĕлсе тăчĕ тет. Туй халăхсем сиксе-сирпĕнсе ташлаççĕ тет. Çапла ташласа тăнă чухне туя çĕр çăтрĕ тет те, кӳлĕ пулса тăчĕ тет.

Эл кӳллине лайăх мар теççĕ. Çуллен чун ыйтать теççĕ, чун илет теççĕ. Ĕлĕк унта пит пысăк чӳк тунă тет. Пĕтĕм халăх пуçтаранса кашни çулах шур лаша илсе чӳкленĕ. Унта таçтан та халăх пуçтараннă, çичĕ кун чӳк тунă. Эл кӳлли чӳкĕ эрнелĕх тенĕ, эрне кунтан эрне кунччен чӳкленĕ.

Эл кӳллинчен çăмăр тухать тет. Чӳк парсассăн Эл кӳлли лайăх çăмăр парать, чӳк памасан начар çăмăр, пăрлă, тăвăллă, аслатиллĕ-çиçĕмлĕ çăмăр ярать теççĕ. Аслатиллĕ хаяр çăмăр килсен, пăр çапсан Эл кӳлли чӳк ыйтать тенĕ.

## 325

Энĕш шывĕ Энĕшкасси ялĕнче пурăнакансен мăн аслашшĕсене ял патĕнчен юхса иртекен Пăва шывĕпе пĕрлешме шутланине пĕлтернĕ, çавăншăн хăйне хура вăкăр пама ыйтнă. Лешсем Энĕш ыйтнипе килĕшмен те, юхан шыв хăй çулне Атăл патнелле çавăрса хунă.

## 326

Кӳлхĕрри кӳлли малтан Сăкăт ялĕ патĕнче пулнă. Анчах пĕр типĕ çул хальхи вырăна куçса килсе ларнă. Сăлтавĕ акă мĕнре: Кӳлхĕрри çыннисене (ялĕ ун чухне урăхла ятлă пулнă) Сăкăт кӳлли питĕ кăсăклантарнă. Вĕсен ăна çав тери хăйсен ялĕ çывăхне куçарас килнĕ. Анчах кӳлле витрепе ăсса куçараймăн. Ялти пĕр ватă мăчавар-асамçă кӳлле мĕнле майпа куçарса килмелли вăрттăнлăха пĕлнĕ. Хăй виличчен вăл тăван ялне кӳлĕлле тума шут тытнă.

Çуллахи кун тавраннă каçхине, шăпах çур çĕр тĕлĕнче, вăл Сăкăт кӳллин хĕррине çитнĕ. Асамлă сăмахсем каласа такана çине виç алтăр кӳлĕ шывне ăсса янă, кӳлле хĕрĕх кунран хăй кăтартнă вырăна куçса пыма ыйтнă.

Кӳлĕ шывне вăл халĕ кӳлĕ сарăлса выртакан тĕле пĕр тумлам тăкмасăр илсе çитерсе сапнă. Хĕрĕх пĕрмĕш кунне хĕвел тухăçĕнчен аслатиллĕ-çиçĕмлĕ вăйлă çумăр килнĕ, çĕр кисренсе илнĕ те, ял хыçĕнче пысăк кӳлĕ пулса тăнă. Кӳлĕ вырăнĕнче ака тăвакан çынсем те кӳлĕ тĕпне пулнă. Кӳлĕ шывĕ çурри шыв айĕпе, çурри пĕлĕтпе килнĕ.

## 327

...Ĕлĕк те, халь те çак Çутă кӳлле хĕрсен те, хĕрарăмсен те шыва кĕмелле мар. Кĕрсенех питĕ вăйлă, пăрлă çумăр çуса каять тет. Пĕтĕм тырра-пулла пĕтерет тет. Пĕрре кунта хĕрсем шыва кĕнĕ, ун хыççăнах вăйлă, пăрлă çумăр килнĕ те пĕтĕм тырра-пулла, пахча çимĕçе пĕтернĕ. Вара çавăнпа та çав Çутă кӳлле хĕрарăм тавраш шыва кĕмест.

## 328

Пурăннă тахçан сĕм авалах пĕр сĕм-сĕм патшалăхра пĕр хĕрпе пĕр каччă. Каччи Ваттал ятлă пулнă тет, хĕрĕ — Явраç. Иккĕшĕ те калама çук чиперскерсем; хĕрĕн — пĕр пит çăмарти уйăх та, тепĕр пит çăмарти — хĕвел, каччин сăнĕ-пичĕ кăйкăр та пĕвĕ-сийĕ — кĕреш. Иккĕшĕ те пĕр чăмăра чăмăртанса, савăнса, ыр курса пурăнмалли мăшăр. Анчах та мĕн çав, шутласса пĕр тĕрлĕ шутланать те пурнăç — пуласса вара яланхи истори: хĕрĕ

пуян хĕрĕ пулнă, Ваттал — чухăн çын ачи. Явраç хăйне Ваттала качча пама тем пек тилмĕрсе ыйтсан та ашшĕпе амăшĕ хăйсен хĕрĕшĕн питĕ пысăк хулăм илме ĕмĕтленсе ку шухăшпа шат та пат килĕшмен. Явраçа вĕсем кĕçтин вăхăтĕнчех унпа пĕр эрнерех çуралнă таврари тепĕр çĕрме пуян ывăлĕпе çураçса хунă пулнă-мĕн, пĕве кĕрсе çитсен иккĕшне те туй туса пĕрлештерме калаçса татăлнă эппин... Хайхи палăртнă кун та персе çитнĕ, çĕр чĕтретсе, ян янратса хўхĕм туй тапранса кайнă. Тапранса каяс-са кайнă та-ха вăл, анчах та мĕнле пуçланса кайнă — çаплах пăчланса та ларнă. Явраç, кăра та юратман çынпа ĕмĕр ĕмĕрлеме килĕшмен Явраç, пĕтнĕ пуç пĕттĕрех тесе тытать те, малтан шухăшласа хунă пекех, туй сикки сикнĕ вăхăтрах, хĕве хупăнас самант çитсен, упăшкине кăкăрĕнчен çĕçĕпе вилмеллех яшлаттарать, хăй вара çав каçхинех эпир тинтерех кăна тухнă вăрмана кайса çакăнать... Йĕкĕчĕ ăна, савнă Ватталĕ, иккĕшĕ пĕрле таçта аякка, инçене-инçене, хурлăх çук çĕре тухса тарма канаш панă пулнă-мĕн. Явраçĕ вара, чунтан-вартан юратнă Явраçĕ, çапла çеç тавăрса каланă пулать: «Тавтапуç, Ваттал, эпĕ сана юратрăм, эпĕ сана çав тери, хытă-хытă юратрăм. Хамран та, пурнăçран та ытларах юратрăм. Апла тăк — эпĕ телейлĕ. Манăн атте-анне пире пурпĕр пĕрлештерес çук. Урăх телей мана кирлĕ мар», — тенĕ пулать... Ваттал та, хуйăхпа тăвăннă Ваттал, нумай тўсеймен иккен, Явраçа пытарнă кунах савнийĕ çакăннă туратранах кайса çакăннă. Пўкле виличчен вара телей пўрменшĕн эрленсе Явраç вил тăпри çине ўксе макăрнă пулать хăй... Çав куççультен вара кўлĕ пулса кайнă имĕш — Ваттал кўлли; вăрманне Явраç ячĕпе асăнма тытăннă — Явраç кати... Тепĕр чухне, çĕрлесерен уйăх кăшт палăракан тĕттĕм каçсенче, икĕ этем мĕлкине аванах асăрхама пулать теççĕ — хĕрпе каччă мĕлкисене. Кўлĕ питне сисĕни-сисĕнми пăлхантарса ишеççĕ, савăшаççĕ, калаçаççĕ тет хăйсем. Кăвак çут килеспе вара пач таçта кайса çухалаççĕ.

## 329

Тени кўлли ĕлĕк пирĕн ялтан пĕр çухрăм пак анчах полнă теççĕ, Тения куçаччен. Çав кўлĕ вырăнĕнче халĕ пирĕн патра шор. Çав шора Тĕрне шорĕ теççĕ: ĕлĕк тĕрнесем нумай порăнатчĕç тет. Тĕрне шорĕнчен кўлĕ тоже тўрех Тения куçман, малтан пирĕн ялтан пĕр икĕ çохром поль «Çирĕклĕ» текен вырăн пор, çанта куçнă тет. Куçнă чох кўлĕри шу кўлле татса тохса кайнă теççĕ. Татнă вырăнĕ халĕ те çырма пек — канав пек выртать. Кўлли тайлăм вырăнта полнă, халĕ вăл кўлĕ вырăнĕ типнĕ, унта утă та çолаççĕ. Çав кўлĕ Çирĕклене куçнă чох теминче кон тĕтĕре тăнă тет, тата вăл куçнă çол çине питĕ номмай полă тăкăнса йолнă тет. Полă номмай тăкăннăран пирĕн пĕр уйиа «Полă уйĕ» теççĕ. Вăл уй пирĕн ялтан мал еннелле, чăнах та Çирĕклĕне кайнă çол çинчех.

Çĕнĕ вырăнта, Çирĕклĕре, çавă кўлĕ кайлах номмай тăман тет. Вăл вырăнне йоратман тет. Унтан вара вăл Çирĕклĕрен — Тения — халь тăра-кан вырăна куçнă. Çирĕклĕре кўлĕ вырăнĕ халĕ те пор. Çорконне шу та тăрать, чăн малтанхи вырăнĕнче, «Тĕрне шорĕ» тенĕ çĕрте, шу тăмасть, канавĕ те йохса тохса каять. Хальхи вырăнче вăл кўлĕ питĕ тарăн, çĕр чалăш тăршшĕ вĕрене чол çихса ярса пăхнă тет, вăл та çитмен тет тĕпне.

Тата калаççĕ: çав Тени кўлли кашнĕ çолах пĕр чĕрĕ чон парне илет теççĕ. Кам та полин е çын, е выльăх çолне пĕрре-иккĕ шыва кайсан ăна парне илет теççĕ.

## 330

Пӗр ялта ватӑ карчӑк пурӑннӑ. Унӑн вун пилӗк ҫулхи Мишшук ятлӑ ывӑлӗ пулнӑ. Тӑранма ҫӑкӑрӗ ҫитмен пирки вӗсем кӑмпа ҫисе пурӑннӑ. Вӗсен пӗр пӗчӗк пӳрт пулнӑ тата пур-ҫук тыррине хумалӑх кӗлет пулнӑ.

Пӗрре вӑрӑм йӗпе хыҫҫӑн карчӑк вӑрмана кӑмпана кайнӑ. Ҫӳрет-ҫӳрет карчӑк вӑрманта — кӑмпа пӗрре те тупӑнмасть. Карчӑк тӗлӗнсех каять, хӑй пуҫ тӗлӗшшӗн: «Йӗпе хыҫҫӑн кӑмпа тухаканччӗ-ҫке», — тет.

— Киле каяс пуль, капла ҫӳресе ним усси те ҫук, — тесе мӑкӑртатать карчӑк.

Киле кайма тапранчӗ.

— Ахаль кайиччен пӗрех хут вутӑ пуҫтарса каям, — терӗ.

Ҫатрака пуҫтарма пуҫларӗ. Пӗр тӗмӗ хыҫӗнче такам пуҫтарса хунӑ пӗр купа ҫатрака выртнине курах кайрӗ. Карчӑк хӑй пуҫтарнӑ ҫатрине ҫул ҫине хурса хӑварать те лешне илме каять. Ҫатра купине йӑтрӗ те тем шухӑшпа пӑхса тӑчӗ. Вара карчӑк хура нӳрӗ тӑпра ҫинче хурӑн пуҫлӑ ҫӗлен явкаланса выртнине курчӗ. Ҫӗленӗн пуҫӗ ҫинче мӑйракипе шлепки ҫуталса тӑрать.

Карчӑк вутта пӑрахать те хӑй ҫинчи кипкине хывса ҫӗре сарса хурать. Хурӑн пуҫлӑ ҫӗлен кипке патнелле шуса пырать. Кипке ҫине шуса кӗрсессӗн явкаланать, хуҫкаланать те каллех малтанхи вырӑнне шуса кайса выртать. Хӑй кипке ҫине ҫутӑ мӑйракине пӑрахса хӑварнӑ.

Карчӑк мӑйракине илет те чупать килелле. Килне ҫитет те хӑй мӗн курнине ывӑлне каласа парать. Ывӑлӗ калать:

— Мӗн тӑвас вӑл мӑйракапа? — тет.

Амӑшӗ:

— Эх, ухмах! Вӑл мӑйрака пек хаклӑ япала тӗнчере те ҫук! — тет. — Ҫав мӑйракана тырӑ ӑшне хурсан тырӑ тем чухлӗ сутсан та катӑлмасть, укҫа ӑшне хурсан тем чухлӗ япала илсен те укҫа ӗлӗкхи пекех тӑрать, — тет.

Вара вӗсем мӑйракана пур пек-ҫук пек укҫи ӑшне хураҫҫӗ. Ывӑлӗ тепӗр кунне ҫичӗ тенкӗ укҫине илет те пасара тухса каять. Виҫӗ тенкӗ парса атӑ илет те килне таврӑнать. Килне ҫитсен пӑхать те, укҫи ӗнерхи пекех, ҫичӗ тенкӗ тӑнине курать.

Ҫав ҫич тенкӗпе вӗсем мӗн кирлине пӗтӗмпех туянчӗҫ. Пысӑк пӳрт лартрӗҫ, сарайсемпе кӗлет тутарчӗҫ. Ҫапла вара вӗсем пит пуйса каяҫҫӗ. Ҫулла тырӑ та вырми пулаҫҫӗ, тара тытса анчах ӗҫлеттереҫҫӗ. Ывӑлӗ, улпут пек, атӑсемпе ҫатлаттарса, тӑрӑх анчах пӑхса ҫӳрет. Тантӑшӗсем ывӑлӗнчен «Атӑллӑ Мишшук» тесе кулма тытӑнаҫҫӗ.

Мишшукӗ ҫирӗм ҫула ҫитсен авланма шут тытать. Хӑйне валли хӗр шыраса вӑл ялсем тӑрӑх вунӑ ҫухрӑм таран чупать. Шырасан-шырасан вӑл пӗр пуян ҫын хӗрне илсе ярать. Кусем туй тунӑ чухне ялӗпе ӗссӗр ҫӳреҫҫӗ. Пуян Мишшук эреке шеллемест. Анчах мӑйракапа пуйнине кусем кинне пӗлтермеҫҫӗ.

Хӗле кӗрсен кинӗ кӗнчеле арла пуҫлать. Хунямӑшӗ пӗрре кинӗн кӗнчели ӑшне мӑйрака чиксе хурать. «Ҫип нумайтарах арласа тултартӑр-ха пӗрре», — тет карчӑк.

Кинӗ пӗр кӗнчелене виҫӗ кун арлать. Тӗлӗнсех каять ҫӗн ҫын ку кӗнчеле пӗтменнинчен. Арлать, арлать — кӗнчеле кӑть те катӑлмасть. Виҫҫӗмӗш кунне хунямӑш вут хутса ярать те пускиле тухса каять. Ҫӗн ҫын кӗнчелене салтать, кӑмакана ывӑтать ярать. «Ҫунса кай луччӗ, санпа намӑс курса ларас пулать манӑн!» — тет ҫӗн ҫын. Хӑй урӑх кӗнчеле кӳртсе ҫыхать те арлама пуҫлать.

Кӑшт тӑрсан хунямӑшӗ килсе кӗрет. Кӑмакана пӑхать те — кӑмакара вутӑ малтанхи пекех ҫуннине курать. Карчӑк тӗлӗнсех каять. Лараҫҫӗ-лараҫҫӗ — вутӑ кӑмакара ҫаплах ҫунса выртать. Карчӑк ним тӑвайман пирки:

— Кин, эсӗ кӗнчелӳне арласа пӗтертӗн-и? — тет.

— Пӗтермен-ха, — тет кинӗ.

Ывӑлӗ таврӑнчӗ, апат ларса ҫирӗҫ — вутӑ ҫаплах ҫунать.

Кайран-кайран тин кинӗ калать:

— Эпӗ кӗнчелене кӑмакана пӑрахсаттӑмччӗ, уншӑн мар пулӗ-ҫке? — тет.

— Эх, кинӗм, кинӗм! Пӗтертӗн эс пире, пӗтертӗн! — тесе ӳлет хунямӑшӗ.

Вара хунямӑшӗ кинне майрака ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа парать. Ывӑл часрах витрепе шыв сапма пуҫларӗ. Амӑшӗ те ывӑлне кӑмакана шыв сапма пулӑшать. Кинӗ ним тума пӗлмесӗр калла-малла чупкаласа анчах ҫӳрет.

Сапсан-сапсан каҫчен вучӗ аран-аран сӳнчӗ, анчах ун вырӑнне шыв юхма тапратрӗ. Кӑмакаран ҫӗрӗн-кунӗн шыв юха пуҫларӗ. Пӳртне мачча таранах шыв илчӗ, сарайсем юхса кайрӗҫ, шыв ҫаплах юхма чарӑнмасть. Хӑйсем шыва путасран хӑраса пӳрт тӑррине хӑпарса ларчӗҫ.

Вара ҫав шывран питӗ пысӑк ҫырма пулса кайрӗ тет. Ӑна пирӗн чӑвашсем аталлӑ Мишшук ячӗпе Атӑл тесе ят панӑ.

## 331

Пӑла ятлӑ шыв хӗрринче Янкасси ятлӑ ял пур, ҫавӑнтан инҫе мар пӗр питӗ пысӑк кӳлӗ пулнӑ, ӑна Ҫутӑ кӳлӗ тенӗ. Унӑн йӗри-таврашӗ питӗ ҫаврака, вӑл пысӑк ункӑ майлӑ ҫӗр купаланса питӗ ҫӳллӗ тӑнӑ. Йӗри-таврашӗ икӗ ҫухрӑм ҫурӑ ӳкнӗ, тарӑнӑшӗ ҫурҫӗр енче хӗрӗх хӑлаҫ, кӑнтӑрла енче вӑтӑр пилӗк хӑлаҫ ӳкнӗ.

Ку кӳлӗре питӗ вӑйлӑ ҫӑллӑх пулнӑ, ҫавӑнпа та вӑл куҫ пек пулса тӑнӑ. Кӳлӗ тытса тӑракан хуҫа — шыв вӑкӑрӗ пулнӑ, вӑл светтуй пек япала пулнӑ. Ҫав кӳлӗри вӑкӑр ҫумӑр пӗлӗчӗсем хӑпарма пуҫласанах питӗ хытӑ ӳхӗрнӗ. Ҫав кӳлӗ таврашӗнче авал час-часах питӗ вӑйлӑ ҫумӑр ҫунӑ. Кӳлӗ таврашӗнче питӗ йӗпе тӑнӑран ҫав вӑпӑр урисем айне тӗренче хурса выртнӑ теҫҫӗ.

Ку кӳллӗн хӗвел анӑҫ енчен Марка вар текен ҫырма анать. Вӑл тӳрех ҫак кӳлле пырса кӗрет. Авалхи пысӑк кӳлӗ ҫав Марка вар ҫырминчен юхакан шыва хӑй йышӑнман, кӑнтӑрла енчи вартан уйӑрса янӑ.

Ҫав пысӑк кӳлӗ Ҫутӑ кӳлӗ ялӗ пырса ларсан нумаях тӑман — час куҫнӑ.

Ҫак кӳлле усал ҫын хупланӑ. Шыв вӑкри ача пӑрахса шыва вараланӑшӑн ҫилленсе ҫак кӳлӗрен инҫе мар Пӑла ятлӑ ҫырмана ҫитиччен ҫӗмӗрсе тухса кӳлӗри шыва ҫав ҫырмана юхтарса янӑ теҫҫӗ.

Ватӑсем ҫапла та калаҫҫӗ: ачана шыва пӑрахса ҫылӑха кӗнӗшӗн кӳлӗ вӑкӑрӗ ҫилленсе виҫӗ уйӑх ӳхӗрмесӗр тӑнӑ, ҫав виҫӗ уйӑх хушшинче вӑл аякка кайса кӳлӗ валли вырӑн шыраса килнӗ, каяс килменнипе виҫӗ талӑк пӗр чарӑнмасӑр ӳхӗрсе макӑрнӑ, вара ҫӗрле ҫумӑр пӗлӗчӗ пек хӑпарса Улатӑр уесӗнче Сӑрӑ вӑрманне кайса вырнаҫнӑ, пуллисем пӑтӑ пек тӗпне тӑрса юлнӑ теҫҫӗ.

Тата çапла та каласçĕ: икĕ çамрăк, пит илемлĕскерсем, шап-шурă тумтирпе, шурă карттуспа хĕвел анăç енчен килчĕç те тӳрех кӳлĕ патне пырса çăварĕсене шыв сыпрĕç тет. Çавăнтан кайран кӳлĕ нумай та тăман, часах типнĕ теççĕ.

Ĕнтĕ çапла та каласçĕ: Вырăскасси ятлă ял çыннисем хăйсене çĕр ытларах тăвасшăн кӳлĕрен пуçласа Çутă кӳл ялĕн çĕрĕнче пысăк шыв юххи пек чавса Пăла текен çырмана çитернĕ, вара çав канавпа çуркунне кашни çулах шыв кӳлĕрен вăйлă юха-юха кайнă. Çапла ĕнтĕ, чылай çул иртсен çав канав питĕ пысăк çырма пулнипе кӳлĕри шыв йăлтах юхса кайнă.

Çав авалхи кӳлĕ вырăнĕнче пит вăйлă хăмăшлăх пулнă. Выльăхсем унта кĕрсе кайсан тупмалла та пулман, лашапа анчах кĕрсе шыраса тупнă. Çав вăйлă хăмăшлăх ăшĕнче тĕрлĕ вĕçен кайăксем: тăрнасем, кайăк хурсем, кайăк кăвакалсем, ытти тĕрлĕ вĕçен кайăксем те нумай йăва туса, чĕпĕ кăларса пурăнаççĕ. Çуллахи кунсенче çав авалхи кӳлĕ вырăнĕнче вăрманти пек вĕçен кайăк сассисем питĕ илемлĕ илтĕннĕ.

## Ӳсен-тăран

*Ӳсен-тăран асамлă та хăватлă пулнине ĕненесси чи авалтан юлнă. Авал этем пур ӳсен-тăрана та чунлă тесе шутланă, вĕсем этем пекех пурăнаççĕ, çуралаççĕ, ӳсеççĕ, ватăлаççĕ, вилеççĕ, ыратнине те, кӳрентернине те туяççĕ. Кӳрентернĕшĕн тавăрса усал тăвасран çынсем хăранă. Йывăççен ашшĕсем те, аслашшĕсем те пур иккен, вĕсен патши те хăйсен. Уйрăмах чăвашсем ватă юмана пысăка хурса хисепленĕ, иртсе каймассерен ăна пуççапнă, ун айĕнче чӳк тунă («Çырлахăр, пур киреметсем, кĕлĕсем, Хĕртсурт, Юман йывăç, Çĕр-Шыв, Уйăх-Хĕвел, Хăрпан, çырлахăр»).*

*Чăвашсен мифĕ-халапĕсенче пилеш йывăç пысăк вырăн йышăнать. Унăн хăвачĕ, пĕтĕмĕшле илсен, усал-тĕселсенчен сыхланинче. Çак пĕлтерĕш «Кив халалри» Турра Шуйттанран пилеш хăтарса хăварни çинчен калакан сюжетра та пур. Пилеш этем ĕненĕвĕнче усалтан, чир-чĕртен, тĕрлĕ хăрушлăхран сыхлакан, упракан таса йывăç пулса юлнă. Пилеш хуллипе хуралтăсене, кил тавраш ĕнчи япаласене çапса усала хăваланă, ача-пăчана, выльăх-чĕрлĕхе усал-шуйттанран, чир-чĕртен сыхлама пилеш пĕтевĕ, хĕрес çакнă т.ыт.те. Пилешĕн сыхлав йывăçĕ пĕлтерĕшĕ ытти нумай халăхсен (славянсен, марисен, пăлхарсен т.ыт.те) халапĕсенче упранса юлнă.*

*Йывăç-курăкпа ытти ӳсен-тăран авалхи çыншăн хальхинчен те пĕлтерĕшлĕрех пулнă. Маларах вĕсен ăрăмлă-асамлă вăйне тупма тăрăшнă: Пурнăç йывăçĕ, Киремет йывăçĕ, Шилĕк йывăçĕ тенĕ. Каярахпа сиплĕ ӳсен-тăрана мала кăларнă: уртăш, армути, вĕлтрен, упа сарри, юнатмăш, хурхух, хĕрен тата ыттисен хуçалăхри кирлĕлĕхне палăртса пынă. Пĕрисене ырланă — ĕрчетнĕ,теприсене тиркенĕ— кăкланă.*

*Тырă-пулă ӳстерекен чăвашсен ыраш пучахĕ, пăрça хутаçĕ, хăмăш чаканĕ, табак сиенĕ, тымар сĕткенĕ çинчен калакан халапсем пур. Вĕсем ытти халăхсен сăмахлăхĕнче тĕл пулмаççĕ. Эппин, халăх апат-çимĕçре е им-юмра усă курнă пулăха асамлăхпа пиелеме тăрăшнă. Кайранхи тапхăрта ӳсен-тăран çинчен каланă чухне вĕсен сиплĕх енĕсене кăтартни нумай. Ку вара халăх медицинин витĕмĕпе çыхăннă. Çапла майпа авалхи асамлăхпа кайранхи ăслăлăх çыхăнсах пынă.*

## 332

Этемсем Шуйттанпа Эсреле курайми пулнӑ. Ӑҫта курнӑ, унтан хӑваланӑ. Лешсем ниҫта пытанма ҫуккипе Турӑ патне пынӑ та:

— Тӗнче ҫара, пире пытанма ҫӗр ҫинче вырӑн ҫук, — тенӗ тет.

— Эсир мӗн тӑвасшӑн вара? — ыйтнӑ Турӑ.

— Ҫӗре тӗклентересчӗ, — тенӗ тет хайхисем.

Турӑ пӗр ывҫӑ ҫӗр илчӗ тет те йӑваласа йывӑҫ туса лартрӗ тет. Эсрелпе Шуйттана та ҫавӑн пек туса лартма хушрӗ тет. Ҫавӑнтан вара Турӑ лартнӑ йывӑҫ-курӑк ҫимӗҫлӗ, Шуйттанпа Эсрел лартнисем ҫара пулса тухнӑ.

Ҫав вӑхӑтран йывӑҫ-курӑксем шӑтса ҫӗр тӗкленсе кайнӑ.

## 333

Ҫӳлти Турӑ ҫынсене яланах ырӑ тума тӑрӑшнӑ. Вӑл вӗсене яланах пулӑшса пынӑ. Ҫакна вара шуйттансем юратман. Пӗррехинче ӑна вӗлерме шут тытнӑ. Ах, хӑвалаҫҫӗ тет. Турри тарать. Кӗҫех ку вӑрмана кӗрсе каять. Пӗр йывӑҫ та ӑна хӳтӗлемест. Турӑ ним тума аптӑрать. Чӑрӑшпа хыр айне пытанса юлать тет. Турӑ ытти йывӑҫсене ҫакӑншӑн каҫарман. Кӗркунне ҫитсен йывӑҫсен ҫулҫисем кашни ҫулах тӑкӑннӑ. Хырпа чӑрӑш ӗмӗрӗпех сип-симӗс ларнӑ.

## 334

Тур амӑшӗ Турра ҫуратсанах ӑна шуйттансем хӑвала пуҫланӑ. Тур амӑшӗ ачине ҫӗклет те тарса каять. Пырать ҫапла йӗре-йӗре те ӑвӑс йывӑҫа курать:

— Ӑвӑсӑм, йывӑҫӑм, — тет, — пушалстӑ пытарса хӑвар, хӑвӑн ҫулҫусемпе хупласа хӑвар пире, шуйттансем хӑвалаҫҫӗ, — тет.

— Манӑн ҫулҫӑсемпе ҫил ачисем выляҫҫӗ, мӗн тӑвап эп сирӗнпе, вӑйсӑрскерсемпе? — тет.

Тур амӑшӗ ӑваса:

— Эс кӑшт ҫил вӗрнипех чӗтресе лар малашне, — терӗ тет те малалла чупрӗ тет.

Татах кайсан-кайсан Тур амӑшӗ хурӑна тӗл пулчӗ тет, ӑна тархасла пуҫларӗ тет:

— Хурӑнӑм-пикеҫӗм, пире шуйттансем хӑвалаҫҫӗ, халь-халь ҫитеҫҫӗ. Пушалстӑ хӑвӑн ҫулҫусемпе хупласа ҫӑлса хӑвар, — тет.

Хурӑн калать:

— Аҫтан-ха сире пытарайӑп эп, кайӑрах хӑвӑр ҫулупа, — тет.

Тур амӑшӗ хурӑна ҫапла каласа хӑварчӗ тет:

— Пире хӗрхенменшӗн санӑн сӗткенне ӗмчӗр, ларнӑ ҫӗртех хӑрса лар, — терӗ тет те малалла кайрӗ тет. Кайсан-кайсан чӑрӑша тӗл пулчӗ тет.

— Чӑрӑш, чӑрӑш! Пушалстӑ пире хӑв тураттусем айне пытар. Пире шуйттансем хӑвалаҫҫӗ, кӗҫ-вӗҫ хуса ҫитеҫҫӗ, — терӗ тет.

Чӑрӑш кусене вӑр-варах тураттисемпе хупласа хучӗ тет. Шуйттансем ним курмасӑрах иртсе кайрӗҫ тет. Тур амӑшӗ чӑрӑша тем пек тав туса пӗтерчӗ тет, пил пачӗ тет:

— Ӗмӗр симӗс лар, пархатарлӑ пул. Пире хваттер янӑ пек, ҫынсем санран ҫурт ҫавӑрса пурӑнччӑр, — терӗ тет.

Ăвăс çавăнтан аранçă çил вĕрнипех чĕтресе ларать тет. Хурăна, хурлăх кӳрет тесе, халь те пахчана лартмаççĕ, ун сĕткенне ĕмеççĕ, çĕрессе те час çĕрет, ларнă çĕртех хăрса ларать. Чăрăш вара ĕмĕр симĕс ларать, унтан пӳрт туса пурăнаççĕ.

Ĕлĕк шуйттансем вăйлă пулнă, Турăран та хăраман вăл пĕчĕк пулнă чухне. Кайран, Турă ӳссе çитсе хăватлансан, шуйттансем тарса пĕтнĕ, хăшĕ шывра пурăнать, хăшĕ вăрманта-мĕнте. Турă хăйсене çĕнекен пуласса пĕлсе ăна пит тытса вĕлересшĕн пулнă тет шуйттансем. Ăна чăрăш çăлса хăварнă, уртăш йывăç çырлипе тăрантарса ӳстернĕ. Çавăнпа таса вăл йывăççем.

## 335

Ĕлĕк-авал çĕр çинче пĕрре те кĕркунне те, хĕлле те пулман тет. Пĕр çулхине кĕркунне питĕ ир пулса ларнă тет. Йывăç çулçисем ӳкме те ĕлкĕреймен, шартлама сивĕ пуçланнă тет. Кайăксем пысăкки те, пĕчĕкки те ушкăнăн-ушкăнăн кăнтăралла вĕçсе кайнă тет. Пĕтĕм чĕр чун шăтăксене тарса пытаннă тет. Пĕр пĕчĕкçĕ кайăк çеç çунатти хуçăлнине пула юлташĕсемпе вĕçсе каяйман тет, хир варринех ӳксе юлнă тет. Ларать тет хайхискер хуйхăрса. Курах каять вăл: инçех те мар вăрман кашлать иккен. Унта хӳтлĕх тупма ĕмĕтленсе вăрманалла çул тытрĕ тет пĕчĕк кайăк. Суранне татах ыраттарас мар тесе хуллен çеç пырать тет хăй. Çитсе кĕрет тет те вăрмана хурăна тĕл пулать тет. «Хурăн, — тет пĕчĕк кайăк, — илсемччĕ мана хĕл каçиччен хăвăн хӳтлĕхне», — тет. Лешĕ: «Ăçта ман кунта санпа аппаланса ларма вăхăт? — тет. — Хамăн çулçăсене сыхламалла ман», — тет. Мĕскĕн, чунĕ кӳтнĕ кайăк, малаллах шурĕ тет. Тĕл пулать тет вăл юмана. Унран хăйне хваттер яма ыйтрĕ тет. Лешĕ: «Ăçта кунта ман санпа аппаланма вăхăт? — тет. — Сансăр та ĕç нумай, — тет. — Çулçăсене те, йĕкелсене те астуса тăмалла, — тет. — Сана хваттер ярсан тата эс ман мĕнпур йĕкеле çисе ярăн», — тет. Мĕскĕн кайăк йĕрсех ярать тет, хăй çапах та малаллах шурĕ тет. Çитсе тухрĕ тет пĕр çырма хĕрне. Кунта йăмра ларать тет. Лешĕ вара: «Ман санпа калаçма вăхăт çук, мĕн чăрмантарса çӳретĕн? Курмастăн-им, çырмапа калаçатăп», — тесе каларĕ тет. Пырать тет çапла мĕскĕн пĕчĕкçĕ кайăк вăрман тăрăх ниçта кайма аптăраса. Хӳтлĕх те ыйтма пăрахрĕ тет пурпĕрех мана никам та шеллес çук ĕнтĕ тесе. Хайхи çак мĕскĕне чăрăш курнă тет те ыйтать тет: «Ăçта çул тытан-ха, кайăк тус?» — тесе. Лешĕ: «Хам та пĕлместĕп ĕнтĕ», — тет те хăйĕн хуйхи çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа парать тет. «Килĕшсен, тиркемесен пурăн, ара, хам патра, — тет чăрăшĕ. — Ак çак аялти турат çинче питĕ ăшă та, çемçе те пулĕ сана, пĕр хуйхăсăр хĕл каçăн», — тет. Çакна пурне те курса, илтсе тăнă, чăрăш çумĕнчех ӳсекен хырпа уртăш йывăççи те пĕчĕк кайăка пулăшма килĕшрĕç тет. Хырĕ хаяр та сивĕ çил-тăмансенчен сыхлама пулчĕ тет. Уртăш йывăççи хăйĕн çырлисемпе тăрантарма пулчĕ тет.

Часах асар та писер, кутсăр-пуççăр çил-тăман тухса кайрĕ тет. Çил сивĕрен ыйтать тет: «Ну, хăш йывăççен çулçисене силлесе тăкас ĕнтĕ?» — тет. Сивви калать тет: «Пуринне те, анчах та кайăка — мĕскĕне — хăй хӳттине илнĕ чăрăшпа хыра ан тив», — тет. Çавăнпа та ĕнтĕ хырпа чăрăш яланах симĕс тумпа тет, хĕлле те, çулла та. Леш пĕчĕкçĕ кайăкăн çуначĕ тӳрленнĕ тет те, тепĕр хĕлле юлташĕсемпе пĕрле кăнтăра вĕçсе кайрĕ тет хĕл каçма.

8. Заказ № К-4231.

## 336

Ёлĕк чăвашсем сунара çӳреме е кампа та пулин вăрçмалла çĕрте усă курма дикий улмуççи ятарласах акса çарайăн* çитĕнтернĕ. Вара дикий улмуççи çăра та питĕ йĕплĕ çитĕннĕ тет. Çак йĕплĕ дикий улмуççи иквиç çулхи хунавне кĕркунне касса илсе, хуппинчен тасатса типĕтсе хунă та çак пĕр-ик хăлаç тăршшĕ туяпа хăть кама çапсан та пур йĕп йĕрĕпе те юн тапса тухнă кăна. Ку вара чăвашсен пĕрремĕш хĕç-пăшалĕ пулнă тет.

## 337

Пан вăл Турă ачин ячĕ. Çав ача кĕтӳ кĕтнĕ, йывăççемпе курăксене, çимĕççене упранă. Пĕринче лайăх ĕçленĕшĕн Турă ăна хĕрелнĕ хитре улма панă. Çав улмана Пан хăйĕн Çĕр ятлă инкĕшне парас тенĕ. Панăн инкĕшĕ питĕ хитре, ырă кăмăллă хĕрарăм пулнă. Темшĕн кайран ăна Çĕр инкĕшĕ тенĕ те йывăç туса янă. Хĕлле вăл юрпа, паспа капăрланса ларнă. Çуркунне вара вăрманта улма йывăççи пулса чечекленнĕ. Пурте юратнă капăр та хитре Çĕр инкĕшне. Пан та питĕ юратнă. Чупса çитет те Пан инкĕшĕ патне вăл хурланса ларнине курать. Вара хĕрлĕ улмана йывăç çине çӳле çакса хăварать. Çавăнтанпа инкĕшĕ Пан улми йывăççи пулса тăрать. Вăл çулсерен тутлă улмасем тăвать. Вĕсене Пан улми теççĕ.

## 338

Пилеш йывăççине чăвашсем таса теççĕ, çавăнпа унтан тухатмăш хăрать теççĕ. Тухатмăша вĕреннĕ çыннăн уйăхра пĕрре тухат тумасан хăй вилет тет, çавăнпа та тухатмăш вăхăчĕ çитсен çынна туса параймасан выльăх-чĕрлĕхе е чăх-чĕпе туса парать тет. Çавăнпа выльăха тухатмăш ан туса парайтăр тесе пилеш йывăççи çакаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх алла пырать теççĕ, алла пымасан е килĕшмесен хăйне хăй начарланса каять, ăнмасть теççĕ. Кĕтӳ малтан хăвалана чух кăчăклă йывăçпа (верба) хăвалаççĕ.

## 339

Шуйттансем пĕррехинче çыр хĕррине пухăнса ларнă тет те канашлаççĕ тет. «Тавай Турра çакатпăр, атту вăл пире хирĕç ангелсем ярать, хамăр ĕçсене тума чăрмантарать», — тесе калаçса лараççĕ тет. Шут турĕç тет те хатĕрленчĕç тет Турра çакма, хупăрласа илчĕç тет те çухăрма пуçларĕç тет.

Турри кăна курсан çухалса кайрĕ тет, ним тума аптăраса тăрать тет. Унталла пăхрĕ тет, кунталла пăхрĕ тет, чупса кайрĕ тет те пилеш çине хăпарса кайса пытанчĕ тет. Шуйттансем пилеш йывăççи патне пыма хăраса тăраççĕ тет. Сапаланса кайрĕç тет вара. Çавăнпа пилеш йывăççи асамлă-сăваплă тет.

## 340

Вăрманта усал пур теççĕ. Пĕр охотник аташса кайнă тет. Тĕттĕм пулсан юман патне пынă та: «Юман, мана сыхла», — тенĕ пулать, выртса çывăрнă пулать. Тепĕр Юман кун патне пынă пулать. «Атя, пичче, асатте-

* Çăра, йăвă.

ме тирпейлеме», — тесе каларĕ тет. Этем выртнă Юманĕ каларĕ тет: «Ман вăхăт çук», — терĕ тет. Ак çапла ĕнтĕ вăрманта аташса кайсан юман сыхлать теççĕ усалтан, çапла халап пур.

## 341

Çав каталăхра пĕр пысăк ватă юман ларать, вăл юман кутĕнче кашни çулах уй чӳк тăваççĕ, çавăнпа вăл юмана уй чӳк юманĕ теççĕ... Çав юмана пирĕн ялсем теме хисепленĕ пекех хисеплеççĕ, ăна иртсе каймассерен, пуринчен ытла ваттисем, çав юман çине пăхса акă çапла каласа иртсе каяççĕ: «Эсĕ пур пусри йывăççенĕн патши, сана кашни çулах асăнса витĕнетпĕр, пире те çырлахсам», — тесе. Тата вĕсенĕн ачи-пăчисем чирлесен вĕсем часах ăвăсран çурта тăваççĕ те çав юман патне кайса кĕлтăваççĕ.

## 342

Хăмăш çил чухне юрлать тем тĕрлĕ, анчах пĕлмелле мар мĕнле юрă юрланине. Вăл хăмăш ма юрлать? Ĕлĕк, иртнĕ ĕмĕрте, хăмăш айне ача пытарнă тет, çавăнпа вăл юрлать, çавăнпа уна шăпăр чĕлĕхĕ тăваççĕ тата, çитменнине, шăпăра пăсаççĕ, вара шăпăр калами пулать.

Йăмра йывăççи те юрлать çил чухне, уна сăнакан пирĕн ялта Данила Тимофеев ятлă çын пур, юррине те пĕлет вăл.

## 343

Авал Турă этеме ыраш панă чух çынран: «Çакă кирлĕ-и сана?» — тет. Çын: «Кирлĕ мар», — тет. Çавăн пек темиçе хут ыйтрĕ тет. Ыйтмассерен пучаххи кĕскелсе пырать, ĕлĕк пучаххи тĕпĕнченех пулнă. Кайранхинче йытă хамлатса ячĕ тет. Йытă хамлатсан ыраш вĕçне хальхи пек пучах тăрса юлнă. Йытă хамлатман пулсан этем ырашсăрах тăрса юлмаллаччĕ. Йытта çавăнпа хисеплемелле.

## 344

Чăвашсем ăнкартнă тăрăх, Турă çăкăр-тăвара çынсене анчах мар, ытти выльăх-чĕрлĕх валли те панă.

Этем пĕринче хăйĕн итлеменлĕхне пула кăшт кăна ыраш çăкăрĕсĕр тăрса юлман.

Ĕçĕ çапла пулса иртнĕ. Малтанах пĕр пучахлă тырăсем нумай пучахлă ӳснĕ. Ыраш туни çинче аялтан пуçласа тăррине çитиччен пучахсем питех те нумай ларнă. Ун пек тырра вырма йывăр килнĕ. Пĕринче ыраш выракан хĕрарăм ывăнса çитнĕ те ӳпкелеме пуçланă: «Нумай пучахлă тырра вырма чăнах çăмăл мар». Çакна Турă илтнĕ те ун патне пынă, каланă: «Мĕн-ха эсĕ çилленсе ӳпкелешетĕн?» Хĕрарăм ăна каланă: «Пĕр туна çинче пучахсем нумай пирки вырма кансĕр, алла час-часах каса-каса илетĕп». Кăна илтсен Турă хăмăл çинчи пучахсене аялтан татса пăрахма пуçланă. Хăй ыйтнă: «Кун чухлĕ юлсан çитет-и?» Хĕрарăмĕ шарламан, Турă малалла татса пынă. Юлашкинчен туна тăрринче пĕр пучах кăна тăрса юлнă. «Пĕр пучах кăна юлчĕ, çитет-и?» — ыйтнă Турă. Хĕрарăм малтанхи пекех

чĕнмесĕр тăнă. Юнашар çӳрекен йытă кăна хурлăхлăн йынăшса янă, вара Турă юлашки пучахсене мĕскĕн йытă валли хăварнă. Халĕ вара чăвашсем пĕр пучахлă тырăсене йытă ыйтнипе Турă ун валли хăварнă тесе калаççĕ. Турă кашни каçах йытăран хуçа апат мĕн чухлĕ панине ыйтса пĕлет теççĕ. Йытă çапла хуравланă пулать: «Хамăн сăмса тăрринчи хура пăнчă чухлĕ пачĕç». Çапла каланăшăн чăвашсем йытта çилленеççĕ, ăна çăкăр чăнах та сăмса хури чухлĕ çеç памалла теççĕ. Çăкăрне вуçех памасан юрамасть, мĕншĕн тесен йытă Турра каласа пама пултарать. Ун чухне чăвашсене нуша лекет! Çав инкекрен хăтăлас тесе чăвашсем килте кашни каçах пĕрпĕринчен: «Йытта çăкăр панă-и?» — тесе ыйтаççĕ.

345

...Питĕ авал, Сĕве хĕррисене тата пĕтĕм тавралăха вăрмансем хупласа тăнă вăхăтсенче, тискер кайăксемпе кайăк-кĕшĕк шутсăр нумай ĕрченĕ тата вĕсене çынсем тытса çинĕ чухне, чăн тĕнпе пурăнакан чăвашсем хăйсен таса вăрманĕсене ют çынсене кĕртмен. Турă хăй çынсене йывăç хăвăлĕсенчи тискер хуртсен пылне тупса çиме пулăшса тăнă чухне пиччĕшĕпе шăллĕ Якишпа Велюк пурăннă. Асли, Якиш, кăра çын пулнă, кĕçĕнни — йăваш.

Пĕринче Якиш вăрманта сунарта çӳренĕ. Хаяр сунарçа Турă пулăшас темен, çавăнпа сунар ăнăçлă пулман. Выçса çитнĕ çилленчĕк Якуш шăллĕ патне пынă. Шăллĕ пыл çисе ларнă. Асли пыл пама ыйтнă. Шăллĕ хавaспах хăналанă пиччĕшне, Якиша апат килĕшнĕ. Шăллĕн пурнăçĕпе кăсăкланнă пек пулса пиччĕшĕ шăллĕнчен тутлă пыл пухăнакан вырăнсене кăтартма ыйтнă. Уçă кăмăллă Велюк пиччĕшне пур вĕллесене те кăтартнă. Темиçе кун иртнĕ. Шăллĕн йывăçĕсем патне çĕрле вăрттăн пырса хăвăлсенчи пыла пиччĕшĕ вăрласа кайнă. Анчах та вăл Турă йĕркине тытман, карасăн пĕрремĕш татăкне Киреметри таса тунката çине хурса паман. Турă çилленнĕ, вăл хушнипе вĕлле хурчĕсем пĕтĕм çĕртен вĕçсе пырса чăрсăр Якиша вилмеллех сăхса пĕтернĕ. Ăна сăхнă хуртсем хăйсем те вилсе выртнă. Ырă Велюк пиччĕшĕпе хуртсен виллисене курсан макăрса янă. Вăл Якиша та, хăйне тăрантарса пурăннă хуртсене те шелленĕ. Вăрах макăрнă вăл, куççульпех çывăрса кайнă. Тĕлĕкре вăл сасартăк Турă сассине илтнĕ: «Кай та пăру тыт, ăна шывпа сап. Шыв мĕн тăвать, эсĕ те вилнĕ хуртсемпе çавна ту».

Вăрансанах Велюк Турă хушнине пурнăçланă. Пăру силленсе илнĕ, шыв çутă тумламсем пулса çĕр çине сапăннă та тăпра айне кĕрсе кайнă. Вара Турă каланине итлесе Велюк вилĕ хуртсене пухнă, вĕсене тăпра айне сапса хăварнă. Çакă пĕрремĕш хыт çĕре сухалани тата ăна акса хăварни пулнă. Кĕçех çĕр айĕнчен курăк курăнма пуçланă, ун çинче пучахсем пулса ларнă. Вĕсенчен пĕрисен Якиша сăхнă хуртсен сăнни пекех хылчăк ӳснĕ, теприсем çинче пыл хурчĕсен тăпки пек пĕрчĕсем çакăнса тăнă. Малтан Велюк пыл татнă вăхăталла пучахсем тулса çитнĕ. Велюк вĕсене çапса илнĕ, пĕр пайне таса Киремет юпи çине кайса хунă, ыттине чулпа авăртса, шывпа çăрса типĕтнĕ те пыл вырăнне çиме пуçланă. Çапла çăкăр пулса тăнă.

Якиша усал вайсем илсе кайнă, чĕринчен пыл хурчĕсене вĕлерекен хуртсем тухнă. Çав ӳтренех этем тыр-пулне вăрласа çиекен шăшисем те пулса кайнă теççĕ.

## 346

Нурăс ялĕнчен çурçĕр енче пĕр мăнă йĕпе çырма пур. Нурăс ялне çурса Çавал шывĕ çине тухать. Çырма пуçĕ Нурăс ялĕнчен ик анапӳ çӳлтен тапранать. Çак вырăнти ĕç, ваттисем каланипе, ĕлĕкрен те ĕлĕк пулса иртнĕ. Ĕлĕк пасăр каланă çырма пуçне умма лартма хăваланă теççĕ. Анчах вĕсем çакна пĕлеймеççĕ, те тутар аллинче чухне, те вырăс аллинче чухне пулса иртнĕ. Çĕн ял Нурăсри çынсем умма вырăнне çитсен, умма купаланса выртнине курса, каялла таврăнса тарнă теççĕ. Усен хăрушлăх шухăшсем, сăмахсем çакăн пек пулнă, çав Усал çиякан уммана кам çийĕ. Пире Усал умми кирлĕ мар тесе каласа тарнă теççĕ.

## 347

Кăвар, пăрçа, улăм пурăннă тет. Пĕрре çаксем таçта кайма тухнă. Вĕсен шыв урлă каçмалла пулнă тет. Кăварпа пăрçа улăма: «Шыв урлă выրт, эпĕр каçса каяр», — тесе каларĕç тет, унсăрăн нимле те каçса кайма çук тет. Улăм кусене итлерĕ тет те йăпăр-япăр шыв урлă тăсăлса выртрĕ тет. Пăрçа улăм çине выртрĕ тет те кăлтăр-кăлтăр кусса леш çырана каçса кайрĕ тет. Ун хыççăн кăвар каçать тет. Улăм çийĕпе каçнăçем улăмпа шыв перĕнсе чашласа пырать тет. Хăй улăмĕ те çунать тет, кăварĕ те чашлать тет. Хăй кăвар шăпах шыв варрине çитрĕ тет. Улăм çунса татăлнипе чаш! турĕ тет те шыва ӳксе сӳнсе ларчĕ тет. Çакна пăрçа курчĕ тет те ха-ха-ха! тесе кулма пуçларĕ тет. Кулчĕ-кулчĕ тет те шарт! туса çурăлса кайрĕ тет. Çав вăхăтра шыв хĕрринче тимĕрçĕ утса пынă тет. Çак пăрçана курчĕ тет те тимĕрçĕ лаççинче çапса çыпăçтарчĕ тет. Çавăнпа пăрçа çĕвĕллĕ тет.

## 348

Ĕлĕк-авал, çерçи кăвакал чухне, Турăпа Шуйттан иккĕшĕ те пĕлĕт çинче пурăннă. Пĕрреччен вĕсем таса Мария пирки хирĕçме, харкашма, тепĕр майлă каласан, пĕр-пĕрне кĕвĕçме тытăннă. Турри сулса кăна янă та Шуйттана çамкинчен, лешĕ тӳрех çĕр çине анса лачлатнă, ӳкнĕ вырăнĕ лачкам сарă шыв пулса тăнă. Çав шăршлă вырăна элес-мелес хупах пек курăк шăтса тухнă, çынсем вара çав усал курăка туртма тытăннă: Табак тесе ят панă.

## 349

Турă çĕр çине ансан ăна пĕтĕм курăксем пуç тайса кĕтсе илнĕ. Пĕр табак курăкĕ çеç Турра пуç тайман. Турă çав чечеке вара питĕ çилленнĕ. Çавăнпа ăна Турă:

— Ĕмĕрех сĕрĕм хушшинче тертленсе йăсăрланса пурăн, — тенĕ.

Çавăнтан пуçласа çынсем пирус туртаççĕ тет.

## 350

Ĕлĕк, ваттисем каланă тăрăх, упа сарри чечекĕ Шуйттан чечекĕ пулнă тет. Çимĕк каç çурăлать тет вăл. Çав тери илемлĕ, çав тери чаплă шăнкăрав пек шăнкăртатса çурăлать тет. Çав чечеке татсан çын ĕмĕрĕпех пуян пурăнать тет. Ăна сасă кăларса çурăлнă вăхăтра татса илмелле тет. Алăра пуртă

пулмалла тет, никама та чĕнмелле мар тет, пĕр каялла çаврăнса пăхмасăр утмалла тет. Вара çын питĕ пуян пурăнать тет.

Пирĕн ялта ĕлĕк питĕ пуян çын пурăннă тет. Çавăн пек калаçнине илтсен çав чечеке кайса татма шухăшлать тет. Тĕнчере чи пуянни пуласшăн тет. Анчах хăй питĕ хăравçă пулнă тет. Çур çĕр çитсен чечек çурăлма тытăнчĕ тет. Çак çын чечеке татрĕ тет те ним çаврăнса пăхмасăр утрĕ тет. Йĕри-тавра шуйттансем тет. Кăшкăраççĕ, çухăрашаççĕ тет. Хăй хăравçă пулнă пирки хыçалалла çаврăнса пăхрĕ тет. Вара çĕр чĕтренсе кайрĕ тет, аслати кĕрлесе кайрĕ тет, чĕресрен янă пек çумăр тăкрĕ тет. Çакă çын вырăнне хура вырăн кăна тăрса юлчĕ тет.

Пуйма каякан вилсе килнĕ тет.

## 351

Картлă хупах каçхине, июнĕн 24-мĕш кунĕнче, çурăлать теççĕ. Тата хăшĕ Петрав ыран тенĕ каçхине çурăлать теççĕ. Çав курăкăн чечеккине тупакан çын пит телейлĕ, пуян пулать теççĕ.

Акă ун çинчен мĕн калаççĕ. Пĕр çын çав каçхине вăрманта лаша шыраса çӳренĕ. Вăл пит нумайччен çӳренĕ, лашине тупайман. Картлă хупах чечекĕ çав вăхăтра тепле унăн çăпати ăшне лекнĕ. Çав çăпата ăшне чечек кĕнине пĕртте пĕлмен. Вăл халиччен çав курăк çинчен ним хыпар та илтмен. Çав чечек çăпата ăшне кĕрсенех унăн куçне пур çĕрте те укçасем пит нумай курна пуçланă, вăл шалт тĕлĕнсе хăраса кайнă, ку ман куçа анчах çапла курăнать пулĕ тесе шухăшланă. Вăл пĕр укçине илсе пăхнă та, вăл чăнах та укçа пулнă. Укçана пур кĕсьесене, чăлхасем ăшне туллиех тултарнă, вара хаваслaннипе лашине шырама та маннă. Вăл укçана пит нумай пуçтарнă, ниçта хума та пулман. Ыран каллех килсе пуçтарăп-ха тесе хăш вырăнтине паллă туса хăварнă, вара киле таврăннă. Вăл киле пит хавасланса таврăннă, акă ĕнтĕ мана Турă пачĕ, эпĕ ку укçапа темĕн тума та пултарăп. Манăн халĕ çурт начар, эпĕ ăна хуçасеннинчен те чаплăрах туса лартам, лайăх лашасем туянса вĕçтерсе анчах çӳрем; халĕ укçа вăрманта тата пит нумай тесе шухăшласа хĕпĕртесе çулпала пынă. Унăн алли-ури çĕре перĕнмен. Анчах унăн савăнăçĕ çулпала пынă чухне анчах пулнă; хуйхи те савăнăç хыçĕнчех тăнă, уншăн кайран укçа та савăнăçлă пулман. Вăл киле таварăнсан мĕн курнине, мĕн тупнине каласа кăтартма тытăннă. Арăмĕ упăшки сассине илтсенех çавăрăнса пăхнă, анчах никама та курман. Вара арăмĕ ман патăма усал килчĕ пулĕ тесе пит хăраса кайнă. Упăшки ăна татах кала-кала ăнлантарнă, акă ку эпĕ тесе пит нумайччен калаçнă, унăн сасси илтĕннĕ, хăй арăмĕ куçне курăнман, мĕншĕн тесен çав курăк чечекĕ çын çумĕнче пулсан çын ытти çын куçне курăнми пулать теççĕ. Упăшки арăмне ăнлантарас тесе мĕн чухлĕ тăрăшнă, арăмĕ миçенчен миçе хăраса пĕртте ĕненмен. Упăшки вара ман арăм ухмаха ернĕ-мĕн тесе пит хуйхăра пуçланă. Вара хуйхипе чунне пусарас тесе хупаха ĕçме тухса кайнă. Вăл хупаха пырса кĕрсен чулавальникрен* эрех ыйтнă. Чулавальник те сассине илтнĕ, çыннине курман. Чулавальник эсĕ кам, ăçта эсĕ тесе ыйтнă; вăл эпĕ кунта, санăн умăнта тăратăп, эпĕ çавă çын тесе тĕпĕ-йĕрĕпе каласа ăнлантарнă. Чулавальник куçне те курăнман, вăл хăйĕнчен хăй хăра пуçланă, мана вăрманта хама усал ерчĕ пуль тесе шухăшланă. Чулавальник вăл вăрманта çӳренине пĕлнĕ. Санăн çумăнта картлă хупах чечекĕ

* Хупах хуçи.

пулмалла тенĕ, вара унăн урине салтса пăхнă та чăнах та унăн çăпати ăшĕнче çав чечек пулнă. Чулавальник çав чечеке пĕр çур штавла илнĕ. Чулавальник çавăнтан вара пит кутсăр-пуçсăр пуйса кайнă, çĕрме пуян пулнă, хай çын вара малтанхи пекех пурăннă.

### 352

Эткер пуссинче, Каçал вулăсĕнче, Çĕрпӳ уесĕнче Петров крест текен курăк пур. Çав курăкăн çулçисем хĕреслĕ тăраççĕ, тата унăн чечекки Петрав ыран тенĕ чухне çĕрле анчах çурăлать, çавăнпа ăна Петров крест теççĕ. Çав курăк çурăлнă чухне сыхласа ларсан унăн чечеккине илекен çын пит телейлĕ, пуян пулать теççĕ.

Акă çав курăк чечекки çинчен мĕн калаççĕ. Пĕр çын çав курăк çурăлнă чухне çавна сыхлама кайнă. Вăл пĕр шурă тутăр тата пуртă илнĕ те çав курăк патне кайса ларнă. Чи малтан çав курăк йĕри-тавра пуртăпа тимĕр карта çавăратăп тесе çырса çавăрăннă. Унтан шурă тутăра çав курăк кутне сарса хунă, вара пĕр шарламасăр çав курăк çурăлассине сыхласа выртнă. Курăк çурăлнă та çав шурă тутăр çине ӳкнĕ, вара чипер типтерлесе çыхса кĕсьене чикнĕ. Унта ларнă чухне ăна усалсем тискер кайăксем пек пулса, пит пысăк çĕлен пек пулса тата ют патша çыннисем пенĕ пек пулса хăратнă. Анчах пуртăпа çырса çавăрăннă карта урлă каçма пултарайман. Усалсем çав чечеке тытса илес тесе пит тăрăшнă, анчах ниепле те май килмен. Çав карта ăшĕнче хĕвел тухиччен лармалла пулнă. Усалсем çыннаулталаса, хăйсем тĕллĕн тул çутăлтарса хĕвел тухнă пек тунă. Çав çын хĕвел тухнине курсан савăнса пуртăпа çырнă картаран тухса киле кайнă. Çул çинче вăл виçĕ лашапа пыракан пĕр чиновнике тĕл пулнă. Чиновник çав вырăнтан: «Эсĕ ăçта кайрăн, мĕн вăрларăн?» — тесе ыйтнă. Вăл каланă: «Эпĕ ним те вăрламан», — тенĕ. Чиновник ăна татах: «Çук, эсĕ мĕн те пулсан вăрланă, — тенĕ. — Халĕ ĕнтĕ сана сута илсе каятăп, эсĕ вăрă», — тенĕ те хăйпе пĕрле урапа çине лартнă. Чиновникĕ ăна урапа çине лартсан та канăç паман: «Çук, эсĕ вăрă, сан çумра вăрланă япала пур. Кăлартмасассăн санăн шăммуна йалт ватса пĕтерĕп», — тенĕ. Çав çын хăранă та тутăрпа чĕркенĕ чечекне кăларса панă. Чиновник чечеке хăвăртрах пуçтарса чикнĕ те куçран çухалнă. Вăл усал пулнă-мĕн. Çав çын тарăн шыв урлă тунă кĕпер çинче урисене усса лара панă. Вăл унталла та кунталла пăхкаланă, пур çĕрте те тĕттĕм пулнă, çав вăхăтра çур çĕр анчах пулнă. Вара çапла чечексĕрех тăрса юлнă. Вăл пуçне усса, хуйхăрса киле таврăннă.

### 353

Çумăр курăкĕ — Турă курăкĕ теççĕ. Турă çав курăка пăхса пурăнать. Çав курăк яланах сарă тĕслĕ пулать. Чечеке ларать — сарă тĕслĕ. Çумăр çăвать пулсан çав чечек çурăлса ларать. Вăл йĕпенмест. Уяр пулсан çумăр курăкĕ хупăнса ларать. Вăл курăка ваттисем сиплемелли курăк теççĕ. Юмăçсем çак курăкпа усă кураççĕ. Çак курăк лутра, сарă куçлă. Теприсем çак курăка Сывлăш турри теççĕ.

### 354

Çав Ийе курăкĕ хирте ялан çеремлĕ йăран çинче ӳсет. Çав Ийе курăкĕ шăтнă йăран тăрăх усалсем çӳремеççĕ тет, унтан пит хăраççĕ тет.

355

Мур куракне халер вăхăтĕнче выльăх картине те килсе хĕстереççĕ, вара выльăх çăлăнса юлать тет.

356

Хире утмăл турат пит пуссассăн ăна ют хире ăсатаççĕ теççĕ. Йемен старик хĕрĕ качча кайнă чухне унăн урапи çине никам курман хутран çав утмăл турата çулса хурса янăччĕ тет. Вара хирте вăл курăк тасалнă тет.

## ЧĔРЛĔХ-ЧУНЛĂХ ХАЛАПĔСЕМ

*Çут тĕнчене пултарни çинчен хывнă халапсем хушшинче чĕрчунсем пулса кайнине ăнлантаракан хаймаксемпе хачмаксене хăйсене ушкăнласа тухма пулать: кайăк-кĕшĕк халапĕсем, тискер кайăк, выльăх-чĕрлĕх, пулă-сулă, çĕлен-калта, хурт-кăпшанкă, шăна-păван халапĕ-юмахĕ.*

*Чупса-шуçса çÿрекен чĕрĕлĕх хăйне расна тĕнче. Чĕрчун тĕнчи икĕ пая уççăнрах пайланса тăрать. Халăх сăмахлăхне чĕрĕ чунсем ырă та килĕшÿллĕ сăнпа е усал та тискер пĕлтерĕшпе кĕрсе юлнă. Авалхи курăм халиченех упранса пырать. Апла-капла хакласси пурнăçри лару-тăруран килнĕ. Пĕр çĕршывра çĕлен-калта ним чухлĕ те сивлек мар, чăваш вĕсене тиркет. Пĕрисемшĕн кашкăр тотем (хисеплĕ) шутланать, теприсем ăна вуçех чăтма пултараймаççĕ. Пĕрисем çĕлене каса-каса тăкаççĕ, теприсен ăна нихçан та тивме юраман. Халăхăн авалхи ăс-тăнĕ тĕрлĕ ĕненÿпе, шухăшлавпа тĕнчене алла илсе пынă.*

*Чĕрчунсене чăваш халапĕсенче е Турă ăсталать, е Шуйттан тăвать. Шуйттанĕ яланах Турра хирĕç айкашнăран унпа çыхăннă чунсем те сивлек пулса юлнă. Шуйттан ĕне тума тытăнсан та куштан Качака пулса тухнă. Качаки пуçтах, итлемест, карти-хуртине тиркемест. Ăна чăвашран яланах хулă лекет!*

*Кайăк-кĕшĕк те, выльăх-чĕрлĕх те тĕрлĕ сĕм тупнă. Турă кайăкĕсем сăваплă (шăнкăрч, чĕкеç, кăвакарчăн тата ыттисем), Шуйттан кайăкĕсем синкерлĕ (çăхан, шăши кайăк). Çăхан виле кĕтет, ăна Эсрел чăххи теççĕ.*

*Çĕлен-калта халапĕсем пуян. Çĕлен хăй мĕнли кăна çук! Нумай пуçлă аçтаха, çынçиен çĕлен, шывран тухса сиенлекен çĕлен, çунатлă çĕлен... Килти ырă çĕлен те пур. Чăвашăн пурте мăшăрлă.*

*Усалĕсем хушшинче те хирĕçли, лайăххисем хушшинче те юрăхсăрри сиксе тухать.*

*Куккук, саксук, çерçи е тата ытти чунсем хăйсем этемшĕн ик хаклă: ырă ĕçĕшĕн вĕсене этем мухтать, юрăхсăрришĕн тиркет. Куккука сассишĕн çул шутлама ирĕк панă, анчах чĕпписене ют йăвара кăларнăшăн хисеп çук. Çерçи кайăка е юратса халапланă, е кулса-тăрăхласа юмахлатса пĕтернĕ.*

*Халăх сăмахлăхĕнче Упа, Мулкач, Арăслан, Тикĕр, Тилĕ, Сăвăр, Хăнтăр тата ытти пит нумай чĕрчун сăнарлă. Ахальтен мар вĕсем юптарусен сăпачĕсем пулса тăнă. Авалтанах çапла ăнлантарни паянчченех упранса тăрать: Мулкач — хăравçă, Тилĕ — чее, Тăмана ухмах тетпĕр. Çакăнта чăвашăн хăйĕн хакĕ палăрать. Тĕслĕхрен, ытти халăхсем тăманана Ăс кайăкĕ теççĕ пулсан, чăвашăн вăл — ухмах палли.*

*Пысăкки, пĕчĕкки, хурчĕ, кăпшанки — пурте несĕлĕмĕрсен куçĕ умĕнче хак илнĕ. Çĕр ĕçĕнчен уйрăлнăранпа вĕсен ячĕсене, хакĕсене манса пĕтнĕ. Анчах итлесе пăхăр-ха Шыв калмакне е Çĕр калмакне — унта тем тĕрлĕ вĕт-шакăра асăннă. Хитришĕн те, пайтишĕн те хак панă. Ылтăн хакне пĕрех ĕçчен пыл хурчĕ тивĕçнĕ. Ăнсăртран мар çакă. Кунта чăвашăн пурнăçа усăллă ĕç мăскалĕ курăнать.*

## Кайăк-кĕшĕк халапĕсем

### 357

Пĕтĕм кайăксене Турă тунă. Çунат парса сывлăша янă. Пысăккисен çӳлти сийре, Ăмăрт турă патĕнче пулмалла. Шуйттан ĕрчетнĕ вĕт-хурана тасатма аялта вĕçекен кайăксене (чĕкеçсемпе шăпчăксене) янă.

### 358

Ĕлĕк те чĕр чонсем, ӳсен-тăрансем, çынсем полнă. Анчах порăнсан-порăнсан çĕре шу илнĕ тет те веç çĕр шупа хопланса йолнă. Торă шу çинче ярăнса çӳренĕ. Вăл темиçе чĕр чон ишсе çӳренине корнă тет те вĕсене хăйĕн кимми çине лартнă. Карян, шу чакса кайсан, вĕсене ирĕке ярнă. Вара каллех чĕр чонсем полса кайнă çĕр çинче. Вĕсен шочĕ пысăклансах пынă.

### 359

Авал тĕнчери чĕрĕ чун Эсрелĕрен аптранă тет. Вăл мĕн шухăшланă, çавна тунă. Çамрăккине, ваттине тиркесе тăман — пурне те вĕлернĕ.

Ак пĕрре çынсем пуçтарăнаççĕ те ку Эсреле епле пĕтерĕпĕр-ши тесе канашлаççĕ. Канаш турĕç Эсреле тытса, пичĕке ăшне хупса, кăшăлласа тинĕсе яма.

Пĕр майлă вăхăтра чăнахах та çав Эсреле тытрĕç те, ĕлĕк канашланă пек, пичĕкене хурса тинĕсе пăрахрĕç. Пичĕке хум çинче сиккелесе ишсе кайрĕ тет.

Эсреле хупсан çынсем тата ытти чĕрĕ чунсем пурте манăça юлчĕç тет: вилĕмрен никам та хăраман, мĕншĕн тесен вилĕм Эсрелĕрен пуçне пулман. Çапла пайтах вăхăт иртнĕ. Ватă çынсем ватăлса çитнĕлĕхпе йӳтесе çӳреймесĕр выртнă, çапла çĕр çинчи чĕрĕ чун пурте аптранă, никама та вилĕм килмен. Çынсем: «Капла хĕн-хур курса йӳтесе пурăниччен вилни авантарах пулĕ», — теççĕ.

Пуçтарчĕç пухăва тĕнчери мĕнпур чĕрĕ чуна. Пыракансенчен пуринчен те ыйтаççĕ: «Эсрелĕ пичкине курмарăна?» — теççĕ. Никам та тĕлне пĕлекен пулмарĕ. Унтан тытăнчĕç тĕрĕслеме кам килнине-килменнине. Пурте пуçтараннă: пĕр Чĕрĕп анчах пулман.

Акă Чĕрĕпе чĕнме Çăхана ячĕç. Çăхан чĕнсе килчĕ. Чĕрĕп çул тăрăх лăкăр-лăкăр туса килет. Вăл лăкăртатнинчен пурте ахăлтатса кулса ячĕç. Çапла кулнăшăн Чĕрĕп ӳпкелерĕ те каялла кайма тытăнчĕ. «Хăвăр пĕлместĕр, мăшкăлласа кулатăр», — тет.

Çĕлен унăн хыççăн пырать, вăл епле ыйтса пĕлесшĕн пулнă. Çапла унăн майлă пулса Чĕрĕпрен, чеескер, улталаса ыйтса пĕлчĕ. (Вăл ытти чунлă япаласем хушшинче хăйĕн ятне чапа кăларасшăн пулнă.)

Ҫапла Чӗрӗп Ҫӗлене Эсрелӗ ӑҫта выртнине каласа панӑ чух вӗсен сӑмахӗсене Чӗкеҫ вӑрттӑн итлесе ларнӑ. Чӗрӗп каласа пӗтерчӗ те Ҫӗлене калать: «Асту, тусӑм! Никама та ан кала. Манран мӑшкӑлласа кулчӗҫ, ҫавӑнпа каламарӑм», — тет.

Чӗкеҫ кӑшкӑрса ячӗ: «Эпӗ Эсрелӗ ӑҫта выртнине пӗлетӗп, итлӗр!» — терӗ.

Ҫапла кӑшкӑрнине илтсен Ҫӗлен Чӗкеҫе хыпса ярам тесе кӑлтӑрмач пек пулса Чӗкеҫ патне пычӗ. Вӑл васканипе Чӗкеҫе пӗтӗмпе хыпаймарӗ, хӳри вӗҫӗнчен хыпрӗ. Чӗкеҫ вӗҫрӗ те варринчен хӳри тухса юлчӗ.

Вара Чӗкеҫ каласа пачӗ: «Эсрелӗ тинӗс уттинче выртать, илсе килӗр», — терӗ. Мӗнпур чӗрӗ чун пурте Чӗкеҫе мухтарӗҫ те Эсреле илме ячӗҫ. Эсреле пичӗкерен кӑларчӗҫ, чунӗ кӑштах вилсе кайман. Пурте пӗр ҫӑвартан ӑна каларӗҫ: «Ӗлӗк епле ватти-вӗттине шеллемесӗр вӗлертӗн, малашне те ҫапла пултӑр», — тесе Эсреле кӑларса ячӗҫ. Ҫавӑнтан вара Эсрелӗ ӗнтӗ никама та шеллемест, ретрен вӗлерет. Ҫав ик юплӗ хӳрелле Чӗкеҫрен ыттисем те ҫапла пулса кайрӗҫ тет.

### 360

Кӗркунне вӑрмансемпе хирсенчен ӑшӑ еннелле вӗҫсе каякан кайӑксем хӗл каҫма Турӑ патне пӗлӗт ҫине кайма та пултараҫҫӗ. Турӑ вӗсенчен чӗкеҫе уйрӑмах юратать, мӗншӗн тесен чӗкеҫ унран хӑрамасӑрах хӑйӗн йӑвине сӗтелӗ айнех ҫавӑрса хурать. Ытти кайӑксем аяккарах вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ.

### 361

Чӗкеҫ — кил кайӑкӗ. Вӑл пур кайӑкран та сӑваплӑ. Чӗкеҫ — Турӑ чӑххи теҫҫӗ. Хӗл ирттерме Турӑ хӑй патне илет тет чӗкеҫсене. Ҫавӑнпа чӗкеҫсем ӑшӑ енне кайса пӗтсен чӗкеҫсем тӑруках ҫук пулчӗҫ, Турӑ хӑй патне хӑпартрӗ пуль теҫҫӗ.

### 362

Аслатипе Чӗкеҫ питӗ туслӑ пулнӑ тет. Пысӑк мӑнаҫлӑ Аслати пӗчӗк Чӗкеҫе никама та ҫиллентерме паман. Ӑна аякранах паллаччӑр тесе Аслати хӑйӗн тусне хӗрлӗ пӗсехе парнеленӗ иккен.

Кам та кам Чӗкеҫӗн йӑвине ватса Чӗкеҫе ҫиллентерет, Чӗкеҫ хӑйӗн тусне Аслатине кайса калать те, лешӗ вара ҫак ҫыннӑн кил-ҫуртне ҫунтарса ярать.

Ҫавӑнпа та пире мӗн пӗчӗкрен ваттисем Чӗкеҫ йӑвине ватма хушмастчӗҫ. Чӗкеҫ камсен пӳрт кӗтессине йӑва ҫавӑрнӑ, вӑл сӑвап курать тетчӗҫ.

### 363

Вут кайӑк тӑмана тӗслӗ, шӑнкӑрчран пысӑкрах. Вут кайӑк ӑҫта пурӑннине никам та пӗлни ҫук. Яла-мӗне вут тухас умӗн анчах пырать. Кӑҫал мункунта Ҫӗн Пуянкассинче вут тухрӗ. Вут тухиччен пӗр-ик эрне малтан ҫунас килсем ҫинчен вут кайӑксем вӗҫсе ҫӳрерӗҫ. Пирӗн кӳршӗ матки: «Ҫав кайӑксем яла килсен аван мар текен уна, у кайӑк инкеке сисет теҫҫӗ», — терӗ.

### 364

Шур Атăл тăрăх ухсан-ухсан чи вěçěнче шурлăх пур. Çав шурлăх варринче тылла пуççи пур. Тылла пуççи çинче кайăк патши пурăнать.

Кайăк патши пěрре шăхăрсан пěтěм кайăк пухăнать. Вара кайăк вăрçи пуçланать. Çав вăрçăра, çумăр çунă пек, кайăк вилсе ӳкет. Тепре шăхăрсан вăрçă чарăнать. Кайăксем вара ăçта килнě çавăнта каяççě.

Кайăк патши çěн уйăхра çěнелет, кив уйăхра кивелет.

Çав шурлăх айккинче хăмăшлăх. Хăмăшлăх çумěнче карчăк пурăнать. Çил-тăвăл тухсан хăмăш кашлама пуçлать. Хăмăш кашланине итлесе карчăк юрăсем, кěвěсем юрлать, хăйěн юррисене пирěн еннелле ярать.

### 365

Чанасемпе кораксем кăнтăра вěçсе каяс омěн пěрле вěçсе çӳреççě. Кораксем чанасене: «Сера та пěрле илсе каяппăр», — теççě тет.

Пěринче те çапла полнă тет. Кораксем вěсем ялан çěрле вěçсе каяççě. Ёлěк-авал та çапла чанасем çурса кайсан кусем вěçсе кайнă тет. Ирпе чанасем тăраççě — кораксем çок тет. Восем вара кораксем киличченех косем ста карěç-ши тесе шотласа порнаççě тет. Нăмай шотланипе восен поçěсем шоралса кайнă тет. Çанпа восен поçěсем халь те шорă.

### 366

Пěррехинче кěркунне Ула курак Хура курак юлташě патне пырать те калать тет: «Мана та кайнă чухне чěн-ха, эпě санпа кăнтăра пырасшăн». Хура курак килěшет. Акă вěçсе каймалли вăхăт çитет тет. Хура курак Ула курака пěрле пыма чěнет. «Манăн пуç ыратать çав, санпа пыраймăп пуль, çулě те инçе», — терě тет Ула курак. Хăйěн вара пуçě те ыратман иккен. Вěçес килмен те, кахалланнă та Хура куракпа пыман. Çакăн хыççăн Хура курак Ула курака чěнме пăрахрě тет вара. Хура кураксем пукрав çěрě масар çине çур çěр тěлне пухăнчěç тет те шăп та лăп вун иккěре пурте кăнтăра вěçме çул тытрěç тет.

### 367

Çуркунне çăхан йăвине çавăрнă чухне йăви тěпне пěр-пěр кивě, авалхи укçа тупса хурать тет. Тăрсассăн-тăрсассăн вăл укçа сын куçне курăнми пулать тет. Çав укçана илсе пěрер тěплěрех çěре пуçтарса хурсассăн килте укçа та хушăнать тет, ытти ěçсем те питě ăнса пыракан пулаççě тет.

Тата çамрăк çăхан пирвайхи çул чěпě кăларнă чухне виç çăмарта тăвать тет. Икě çăмартинчен çăхан чěппиех тухать тет, виççěмěш çăмартинчен йыт çури тухать тет. Анчах çăхан ăна нумай усрамас тет. Çав йытта анса илсе ӳстерсессěн вăл йытă вара малашне мěн пулассине пурне те пěлсе тăрать тет. Вут-кăвар тухассине пěлсессěн виçě кун малтан уя тухса йăнăшкаласа выртать тет; вăрăсем çаратса кайсассăн йěрěпе шăршласа тупса парать тет. Çимěк каç ертсе тухсассăн укçасем питě нумай тупса парать тет.

Çăхан чěппине вěлерсе пěр-пěр турат çине çакса хăварсан амăшě ăна çăварне пěр темскерле курăк пырса хыптарать тет те, вăл вара, вырăнтах

тăрин те, çын куçне курăнмас тет. Çав çăхан чĕппийĕн пуçне курăкĕ-мĕнпех татса илсе çӳресессĕн пĕр çын та кураймас тет. Вара ниçта кĕрсессĕн те, темĕн, хăть укçа, хăть çимелли япаласене хуçи умĕнчен илсен те, никам та сисеймес тет.

Çăхана тытса тĕкĕсене çăлсассăн юхан шыв çине ямалла тет, пур тĕкĕ те шыва майлă юхаççĕ тет, пĕр тĕкĕ хăй тĕллĕнех шыва хирĕç каять тет. Çав шыва хирĕç каякан тĕк те хай çăхан çăварĕнчи курăк пекех телейлĕ тет.

Çав çăхан чĕппи çăварĕнчи курăк çын куçне курăнмасăрах ӳссе ватăлать тет. Курăнасса та пĕччен çынна анчах курăнать тет, çимĕк каç анчах тет. Ăна тытас пулсассăн çимĕк каç çаран çине кайса тимĕр карта çаварса ларас пулать тет. Вăл тата пур çĕрте те ӳсмес тет. Çур çĕр çите пуçласан хай курăк курăннă вăхăтра тимĕр карта çине вăрса ларнă çынна усалсем хăратма пыраççĕ тет, хăшĕ сенĕкпе, хăшĕ сăнăпа чикме хăтланаççĕ тет, хăшĕ урапапа, хăшĕ юлан утпа таптама хăтланаççĕ тет; ĕне пек пулса, кашкăр пек пулса пырса аптратаççĕ тет; пăшалсемпе пеме, пуртăсемпе, çавасемпе касма хăтланаççĕ тет, ниепле те чăтса лармалла мар тет. Çапла хăратакансене сайра çын анчах тӳссе ларать тет, сайра çын анчах курăкне курса татать тет.

## 368

Акă халĕ асаттен халапне аса илтĕм-ха. Вăл ăна хăйĕн аслашшĕнчен илтнĕ тет. Çавна сана та каласа парам. Эсĕ Ворнăй еннелле пăх-ха. Çав симĕс тӳпеме куратăн-и? Чи çӳллĕ тӳпине вара Ваçлей сăрчĕ теççĕ. Ĕлĕк-авал çав тӳпере крепăç пулнă тет. Çавăнта вара питĕ вăйлă çапăçу пулса иртнĕ тет. Вăрçи пуçланас умĕн виçĕ кун малтан çак таврана çăхансем вĕç-се килме тытăнчĕç тет. Кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех таçтан та пухăнса килнĕ тет çавсем. Ваттисем çавна асăрхаса çапла каларĕç тет: «Ку ырра мар, вăрçă пулать. Çăхансем вилĕ çине вĕçеççĕ... Пирĕн те вăрманалла тармалла, атту тем пулса тухĕ». Чăнах та, тепĕр виçĕ кунтан таçтан пысăк çар килсе çитнĕ тет те, пуçланчĕ тет вара çапăçу. Крепăçе те тĕппипех аркатса çунтарса ячĕç тет.

## 369

Хура кайăк, курак пысăкăш хуп-хура кайăк, урăхла ăна рункăш теççĕ, вăл сĕм вăрмансенче пурăнать.

Ĕлĕкхи чăвашсем çак рункăша этемĕн малалли ăраскалĕ çинчен систерме пултаракан асамлă кайăк тесе шутланă. Вăл тли-тли! тесе кăшкăрать пулсан, тухнă çул ăнăçлă, телейлĕ пуласса ĕненнĕ, кр-кр! текен сасă парать пулсан инкеке систерет тенĕ.

## 370

Куйкăрăш хăй тĕллевне пурнăçланă чухне куçа курăнсан та, курăнмасан та пултарать. Куйкăрăш çынсене хăнăхать — арçынна та, хĕрарăма та. Вăл пурлăх тупма пулăшать, çынсен укçине тата ытти япалисене туртса каять, анчах та вăл хăйне пăхакан, итлекен çынсене кăна çапла ырлăх парать. Пĕкĕлме уесĕнчи Шешкел ялĕнчи пĕр чăвашăн кил картинче Куйкăрăш валли ятарласа пĕр çурт лартнă. Унта çав кайăк килĕштерекен çын кăна кĕрсе тухма пултарать тесе каласа пачĕ мана Ижуткин вĕрентӳçĕ.

371

Çынна пуйтараканни куйкăрăш пулать тет, анчах вăл пит сайра çĕрте пулать тет. Чыслă, йăваш, тирпейлĕ, вăрçăсăр килте анчах пулать тет. Кăшт мăкăр-мăкăр тăвакан килте пурăнмасть тет вара вăл. Куйкăрăш вăл хăй пит пĕчĕкçĕ вĕçен кайăк тет, вăл чипер, тирпейлĕ килте пулсан пит пуйтарать тет вара, вăл япала тултать тет, укçа килчĕ укçа, мĕн килчĕ ăна тултать тет. Вăл хăй пĕчĕкçĕ пулин те, вăйлă тет пит. Вăл куйкăрăш пырса ернĕ кил пит чикĕсĕр пуйса каять тет вара. Анчах вăл вăрçа пĕртте юратмасть тет. Пупленĕ чух чут ытлашши сăмах калаçма та юрамасть тет. Ăнсăртран мĕнпе те пулин кăшт шăкăр-макăр калаçа пуçласанах, вăл вара хăй пуйтарнисене каялла тулта пуçласан, вара пĕр япала та хăвармасть тет. Вăл киле вара пĕтĕмпе тĕп тăвать тет, ĕлĕкхинчен те усал тет вара, ăна пуйса çитсен маларах сисме кирлĕ тет, маларах сиссен хăйне пĕртте систермесĕр тытса пусма кирлĕ тет. Мĕхĕр (мехер) пусас тесе шухăшланине те пĕлет тет вăл. Вăл куйкăрăш пĕчикçĕ çерçи пек анчах тет. Шурăллăхĕрлĕллĕ чăпар тет. Вăл куйкăрăш автан çăмартинчен пулать тет. Автан çичĕ çула çитсен çăмарта тăвать тет, виçĕ çăмарта анчах, вăл çăмартасене чăх айне хурса кăларсан вара пĕр çăмартинчен йытă, тепринчен çĕлен, тепринчен кушак пулать тет. Чеерех çынсем çавна ӳстерсе тăваççĕ тет. Ăна вара апат вир пăтти анчах кирлĕ тет, урăх япала нимĕн те çимест тет вăл.

372

Ĕлĕк пĕр ялта пĕр карчăк пурăннă тет. Унăн икĕ ача пулнă: пĕри Микула, тепри Марине. Пĕрре амăшĕ ачисене утă çулма ярать тет. Вĕсем валли хутаçне çăкăр, тăвар, уйран чиксе ярать тет. Каяс умĕн амăшĕ ачисене вĕрентсе ярать тет:

— Астăвăр! Утă çулса ывăнсан апатланăр, — тет, — анчах çывăрса ан кайăр, çумăр çума пултарать, — тет.

Микула çавасене йăтать, апатне илет те, çула тухса утаççĕ тет икĕ пĕртăван. Çаран çине çитсенех вĕсем утă çулма тытăнаççĕ тет.

Кăшт çулсанах канма лараççĕ тет. Апат çинĕ хыççăн сисмерĕç те тет хăйсем мĕнле çывăрса кайнине. Утă çулса аванах ĕшеннĕ тет хайхисем. Нумай çывăрнă-и, сахал-и, Марине такам хитре саспа юрланине илтсе вăранса каять тет. Вăл итлесе выртать тет, чăнах та такам ытармалла мар хитре юрлать тет.

— Тăр-тăр! тăр-тăр! тăр-тăри! тă-тăр-и! — тесе юрлать тет.

Марине куçне уçса пăхать тет те тĕлĕнсех каять тет: ир пулнă, хĕвел тухнă, кайăксем тӳпере юрлаççĕ. Çав вăхăтра Маринен пуçĕ тăрринчен темĕнле кайăк пасăрхи юрра юрласа çӳллĕрен те çӳлле вĕçме пуçларĕ тет. Марине Микулана вăратасшăн, анчах та Микула вăранаймасть тет. Ăна вăратас тесе вăл хăлхинчен те чĕпĕтсе пăхать тет. Хытăрах чĕпĕтсен Микула сиксе тăчĕ тет те хăй ăçтине те пĕлеймест тет, ун-кун пăхкалать тет, ăнкарса илеймест тет. Хăлхине те тыткаласа пăхать тет, хĕп-хĕрлĕ тет хăлхи. Марине хытах чĕпĕтнипе ыратать те пулмалла.

Марине ăна хыпалантарса ыйтать тет:

— Çавă мĕнле кайăк? — тет Марине.

— Эпĕ вăл кайăка нихçан та курман, — тет пиччĕшĕ кайăк юррине итлесе.

Марине ăна мĕн илтнине йăлтах каласа парать тет. Пиччĕшĕ сиксе тăрать тет те:

— Атя ăна «Тăри» тесе чĕнер, мĕншĕн тесен вăл пире ир тăратрĕ, — тет йăмăкне.

Çавăнтан вара çав хитре юрлакан кайăка халь те Тăри тесе чĕнеççĕ тет.

## 373

Пĕр çыннăн пĕр ывăлпа пĕр хĕр пулнă. Пĕрре вăл аякка çула кайнă. Каяс умĕн ачисене чипер пурăнма, амăшне итлеме хушса хăварнă тет. Ашшĕ тухса кайсан ачисем амăшĕ каланине итлемен, пĕрре ашкăнса ухăшăн çапăçса кайнă тет. Вара амăшĕ çилленсе ылханса каланă: «Саксук* пулăр», — тенĕ. Çавăнтан ачисем саксук пулса вăрмана вĕçсе каяççĕ тет. Вăрманта вĕсем ашшĕ-амăшĕшĕн тунсăхласа кăшкăрса сÿреççĕ тет. Вĕсен юрри:

Х ĕ р ĕ:
Анне каларĕ: саксук пул терĕ,
Çут тĕнчелĕхре сăвап ил терĕ,
Кайрăм вăрмана çырла пухнă чух,
Анне макрать пуль асне килнĕ чух.

Ы в ă л ĕ:
Хура çĕлĕке илсе кайăр-ха,
Аннене курсан салам калăр-ха.

Х ĕ р ĕ:
Шурă тутăра илсе кайăр-ха,
Аннене курсан салам калăр-ха.
Тăхăнман кĕпене пĕртте тăхăнмарăм,
Тухса кайнă чух «сывă пул» темерĕм.

Аслă шыв хĕрри — сарă хăмăшлăх,
Хура вăрманта саксук сассисем.
Атте каларĕ: килте лар терĕ,
Анне ылханчĕ: саксук пул терĕ.

Т е п ĕ р ю р р и:
Эпир вăрçрăмăр тимĕр ухăшăн,
Анне çилленчĕ питĕрех çукшăн.

Саксук пултăмăр, вĕçсе кайрăмăр,
Атте, куртăн-и, анне, сисрĕн-и?

Пур Атăл тăршшĕнче тинĕс халăхĕ,
Хура вăрманта саксук сассийĕ.

Çырма пусĕнче чĕпĕллĕ кăвакал,
Асăма килсен çурăлать чĕрем.

---

* Тутар, пушкăрт, туркă халăхĕсен мифологинчи кайăк ячĕ, сюжет çаках.

374

Пĕрре Турă мучи кăвак лашине кӳлнĕ те тĕнче тăрăх çӳреме тухнă. Илья пророк çав вăхăтра пĕрмай çăмăр çутарса тăнă. Пĕр çĕрте Турă лаши ăшăха кĕрсе ларнă. Турă лашине хыттăн та кăшкăрса пăхать, пушшипе те чашлаттарать, анчах лаши урапине ниепле те туртса кăлараймасть. Турă шалт çилленсе çитнĕ те Илья пророка куç хыçĕнче ятлама тытăннă. Çав вăхăтрах, çитменнине, таçтан Путене пынă та: «Пăчлантăр, пăчлантăр», — тесе кăшкăрса янă. Турă çилленнипе аслати авăтнă пек хыттăн кăшкăрса: «Эсĕ манран мăшкăллатăн. Апла пулсан эсĕ ылханлă пулăн, çавăнпа сана такам та тытма пултарĕ, утă çулнă чух та çавасемпе касса пăрахма пултарĕç», — тесе каланă. Путене çавăнтах начар вĕçекен пулса тăнă.

Кун хыççăн Турă тарăхнипе лашине татах хытă хĕнеме пуçланă, анчах урапи вырăнтан та тапранман. Çав вăхăтрах таçтан Карăш тухса: «Турăш, турăш», — тесе кăшкăрса янă. Турă лаши Карăш сассине илтсенех урапине ăшăхран çатăр-патăр туртса кăларнă. Турă: «Тпр-р, тпр-ру», — тесе лашине тытса чарнă та: «Ырă сунап сана, Карăш. Эсĕ мана пулăшнăшăн улăхри хурăн айĕнче питĕ хытă чупса çӳрекен пулăн. Çавăнпа санăн сассуна пурте илтсен те, хуна никам та ни куçпа курма, ни тытма пултараймĕ», — тесе хăварнă.

Çакăнтан кайран вара Карăша никам та курма пултараймасть.

375

Кăвакарчăна çиме çылăх теççĕ, вăл çурри этем, çурри кайăк теççĕ.

376

Туррăн пӳрчĕ çуна пуçланă тет. Пурте витресемпе шыв илсе пушар сӳнтерме васкана тет. Çав вăхăтра çерçи улăм пĕрчи йăтса пычĕ тет те çулăм çине пăрахрĕ тет. Çакна Турă курать, тарăхса каять. Вăл вара çерçие нихăçан та утмалла мар пиллет. Çавăнтанпа çерçи чăнахах тек нихăçан та утайман тет. Вăл яланах сиккелешкелесе кăна çӳрет тет.

377

Çерçи ĕлĕк ытти кайăксенчен хытă чупнă тет, çавăнпа ун урине çапса хуçнă тет. Çавăнтанпах çерçи утса çӳреймест тет, сиксе çӳрет.

378

Тĕнчере çĕр пулса тăрсан Турă чĕр чунсене те туса янă. Чĕр чунсем хушшинче вĕçен кайăк сала кайăк та пулнă. Вăл питĕ чăрсăр та сăхă пулнă.

Пĕррехинче Турă вĕçен кайăксем мĕнле пурăннине пăхса çӳренĕ. Пĕр вырăнта темиçе тĕрлĕ вĕçен кайăк пикенсех хырăмĕсене тăрантарас тесе пĕрчĕсем пуçтарнă. Сала кайăк та вĕсемпех пулнă. Вăл питĕ хăвăрттăн çаврăнкаласа чупса пынă та ытти кайăксен умĕнченех пĕрчĕсене сăхса илнĕ. Турă çапла ытла сăхă пулнă кайăка çилленет те урисене тăлласа ярать. «Çапла сиксе çӳре. Ан сăхălан», — тенĕ. Çавăнтан вара сала кайăк утайман, сиксе çӳреме тытăннă.

## 379

Турă пĕтĕм кайăксене тăлласа янă ан çухалччăр тесе. Пĕрре пур кайăксене те салтса янă, анчах çерçи уринчи тăллине салтма маннă. Çавăнпа та çерçи сикет тет.

## 380

Сала кайăк — усал кайăк тет. Вăл ĕлĕкех пулнă, тĕнчене шыв илнĕ чухне Ной карапĕ çинче хăтăлса юлнă тет.

Малтанах вăл çĕр çинче утсах çӳренĕ тет. Пĕррехинче вăл Турă амăшĕ патне пынă. Турă амăшĕ çав вăхăтра вут хутнă, çăкăр пĕçерме хатĕрленет тет. Сала кайăк пычĕ тет те: «Тем! Тем!» — тесе калать тет. Турă амăшĕ нимĕн те чĕнмест тет. Каллех çакăн пек калать тет. Вара лешĕ тарăхнипе сала кайăка турчăкапа çапрĕ тет те, унăн ури чăлахланса ларчĕ тет. Çавăнтан вара сала кайăк икĕ урипе харăс сиксе çӳрет тет.

## 381

Ĕлĕк-авал çерçи ик урипе те пĕр вăхăтрах сиксе çӳремен тет. Пĕрре Турра йĕплĕ хулăпа хĕненĕ тет, вара Турă вăйсăрланса, нишленсе кайнă тет. Унăн питĕ шыв ĕçес килнĕ тет, анчах çывăхра никам та пулман тет, пĕр çерçи çеç вĕççе çӳренĕ тет. Турă çерçие шыв ăсса илсе пыма ыйтрĕ тет, çерçи килĕшмерĕ тет.

Çерçи Турра хĕненĕшĕн савăннă тет иккен, йĕплĕ хуллине те Турра хĕнеме вăлах хуçса килнĕ тет. Çавна Турă та пĕлнĕ тет.

Вара Турра унăн амăшĕ сывалма пулăшать тет. Сывалса çитсен Турă пĕлĕте чи çӳлти хутне, çиччĕмĕш хутне, хăпарса кайса пурăнма пуçлать тет. Хăйне усал тунă çерçи çинчен те манса каймасть тет, ăна тытса ĕмĕрлĕхех икĕ урине тăлласа ярать тет, Илле пророка çав çерçие çиçĕм кăларса çапса вĕлерме хушать тет. Çавăнпа халь çерçи икĕ урипе харăс сиксе çӳрет тет, ăна аслати авăтнă чух тытма юрамасть тет, аслати çапать тет.

## 382

Сала кайăк тăлт-тăлт сиксе çӳрет. Еврейсем Христоса вĕлерме пикенсен сала кайăк Христоса тĕллесе кăтартнă. Вара Турă ăна сиксе çӳремелле тунă.

## 383

Сала кайăксен пĕр вăхăтра пуху пулнă тет, çанталăка мĕнле: сивĕ-и, ăшă-и, çумăр-и е юр çутармалли çинчен шут тăваççĕ тет.

Çав пухăва пĕр Хурчăка пынă та пĕрне тытах кайнă тет. Вара пухурисем пĕр-пĕринчен:

— Кам çук? Кам çук? — тесе ыйтрĕç тет.

Вара пĕри:

— Пирĕн кӳршĕри Яптăк Çтаппанĕ çук, вăл паçăр çакăнта алăк патĕнчех ларатчĕ, çавна илсе кайрĕ пулас вăл Хурчăка йысна, — терĕ тет.

Вара пухурискер пĕри:

— Чухах-ха вăл Çтаппана: вăл яланах халăх çинче хăех çĕнтерсе калаçать, — терĕ тет.

Вара ыттисем те карах:

— Пĕр Çтаппаншăн ничава, ӳлĕмрен варнерех лар, — терĕç тет те, пуху та саланчĕ тет.

Çапла вара сала кайăксен пуху пухни, çанталăка мĕнле тăратасси çинчен шут тăвасси те пулман, пĕр Яптăк Çтаппанне Хурчăка йыснана тыттарса яма пухни анчах пулнă. Çавăнтан вара сала кайăксем пухăнса чакăлтатаççĕ пулсан ватăсем: «Çанталăк пăсăлать», — теççĕ. Чакăлтатнă чух аялтан çӳлелле хăпараççĕ пулсан — сивĕтет, çӳлтен аялалла анаççĕ пулсан — ăшăтать теççĕ.

## 384

Христоса пăталанă чухне сала кайăк шăлан çырли йĕплĕ хуллинчен пăта туса панă. Çав пăтасемпе вара Христоса пăталаса вĕлернĕ тет. Çавăнпа сала кайăка усал кайăк тесе шутланă. Ăна вара çынсем халь те çавăн пек калаççĕ. «Чим! Чим!» — тесе çӳрет тет халь сала кайăк. «Чим! Эп айăплă мар! Чим, чим!» — тесе йăкăлт-йăкăлт сиксе çӳрет вăл. Пурпĕрех ăна усал кайăк тесе шутлаççĕ.

## 385

Христоса пăталанă чухне сала кайăк йĕплĕ хулăсем тупса панă тет ăна пăталама. Вара Христосăн пуçне шăлан çырли хуллисемпе йĕпленĕ тет. Çавăнпа сала кайăка усал кайăк теç, ĕлĕкренпех юратмаç.

Сала кайăка çав усал ĕçе тунăшăн тăлласа лартнă тет. Çавăнпа вăл тăлт-тăлт сикет, ура ярса пусаймасть.

## 386

Ĕлĕк-авал Шаланкă çăл чавса кăларнă, вара кайран Ула курак пынă та çакă çăла кĕрсе вараланса тухать те пĕтĕмпе пылчăкланать, вара çапла Турă патне каять. «Эпĕ, — тет, — çăл чавса çăл кăлартăм», — тет. Турă калать: «Юрать, — тет. — Эсĕ халĕ çавăн пекех ула çӳрен ĕнтĕ хăв суйнăшăн, — терĕ тет. — Кай кунтан, ман патăмран», — тесе хăваласа ячĕ тет. Çавă Ула курак кĕрсе вараланăран Шаланкă халĕ çăл шывне ĕçмест, сывлăм шывĕ анчах ĕçет.

## 387

Çĕр çине шыв тулсан кайран шыв типсе кайнă, ниçтан шыв тупайман тет. Шыва вара Шаланкă теекен вĕçен кайăк тупнă тет, анчах хăй çынсене каламан тет. Ула курак Шаланкă патне пынă тет те шыва кĕрсе шăмпăлтатнă тет. Çапла вара çынсен умĕнче шыв тупнă пек пулса ырă ятлă пулнă тет.

## 388

Турă çĕре шывран малтан пултарнă тет. Çĕре пултарсан Турă Шаланкăна çĕр алтса шыв кăларма хушрĕ тет. Шаланкă Турă каланине итлесе çĕртен шыв кăларчĕ тет. Хăй пылчăкпа пĕтĕмпех вараланса пĕтрĕ тет. Вара

Шаланкă Турă патне каяс тесе шыв патĕнче çăвăнса ларать тет. Çав вăхăтра Ула курак вĕçсе Шаланкă патне пычĕ тет те, хăвăртрах пылчăкпа хăйне вараларĕ тет те Турă патне эпĕ шыв кăлартăм тесе калама кайрĕ тет. Турă ăна тимлесе çырмари шыва ĕçме хушрĕ тет. Çав вăхăтрах Турă патне Шаланкă та эпĕ шыв тупрăм тесе калама пычĕ тет. Турă малтанах çилленсе каларĕ тет: «Эсĕ шыв кăларнă пулсан пылчăклă пулăттăн, эсĕ халĕ тап-таса. Çавăнпа эсĕ çырмари шыва малалла ан ĕç, мĕншĕн тесен эсĕ мана улталарăн, пĕр çумăр шывпе сывлăма анчах ĕçсе пурăн», — тенĕ.

Çапла Шаланкă Турă ылханнипе халь те çырмари шыва ĕçмест тет, çумăр шывпе анчах пурăнать теççĕ.

## 389

Ĕлĕк-авал çĕр çинче шу полман тет. Пĕтĕм чĕр чон çомăр шуйĕпе анчах порăннă тет. Пĕррехинче Шаланкă ятлă кайăк (вăл юхан шыв хĕрринче порнать) сăмсипе чакалтаса шу топать тет. Çакна Корак асăрхаса тăнă тет. Вара вăл ытти кайăксене те кайса пĕлтернĕ тет. «Шаланкă пирĕн ĕçмелли шуя ĕçсе ярать», — тенĕ тет. Ăна курма пĕтĕм кайăк кайнă тет. Çитсессĕн Шаланкă чăнах та айăплă пек пулса тухнă. Çак айăпа тӳснĕ хыççăн Шаланкă пĕвери шуя нихçан та ĕçмен тет. Халĕ те вăл яланах çомăр шуне ĕçсе порнать тет.

## 390

Çумăр умĕн Шаланкă кăшкăрать, Ула курак та кăшкăрать тет. Шаланки Турăран çумăр ыйтать тет. Ула куракĕ ан пар! тесе кăшкăрать тет.

## 391

Тĕкĕрлĕк пĕрре хăйне валли шыв ĕçме çăл авăтрĕ тет. Çăлне авăтса пĕтерсен тăрăласса кĕтсе килне кайрĕ тет. Килĕнче нумаях тăман, таврăннă. Вăл хушăра шыв тăрăлса çите пуçланă тет. Çавăнтан Ула курак вĕçсе пырса çăлра шыва кĕрсе çăлри шыва пăтратрĕ тет. Çавăн хыççăн Тĕкĕрлĕк Турă мана çăл шывĕсене ĕçме хушман пулĕ тесе макăрса килне кайнă тет. Çавăнтан вара вăл сывлăм шывĕпе çумăр шывне кăна ĕçет тет.

## 392

Пĕрре Шаланкă çăл алтма тытăннă. Вăл çăлне алтса пĕтерсен çăвăнса тасалса тухнă та аяккалла вĕçсе кайнă.

Çав çăла Ула курак пырса шыва юри пăтратса, чӳхенсе лапăртанса ларнă. Çав вăхăтра Шаланкă хăй алтнă çăла шыв ĕçме пырать; хăй Ула курак Шаланкăна ĕçме те памасть.

Кайран, тавлашсан-тавлашсан, Шаланкă Турă патне калама каять Ула курак хам алтнă çăлтан та шыв ĕçме памасть тесе. Турă пырса пăхать çав шыв патне — Ула курак çавăнтан пуçĕпех лапăртанса-пылчăкланса пĕтнĕ. Турă Ула курак пылчăкланса пĕтнине курнă та чăнах та вăл хăех алтнă пуль тесе ĕненнĕ. Шаланкă тап-таса пулнă. Çавăнпа кайран Турă Шаланкăна çумăр пуличченех шыв паман.

## 393

Аслă çеçен хирте ялан шывлă кÿлĕсем тата юхан шывлă çырмасем пулман: чĕр чунсем тата курăк-чечексемпе йывăççем çумăр шывĕпех пурăннă. Пĕр çулне çанталăк уяр тăнă, çумăр нумай вăхăт çуман, çавăнпа шыв та пĕтнĕ, кÿлĕсем йăлт типнĕ. Этемсене, кайăксене, пур чĕр чуна та пит йывăр пулнă; вĕсем шывсăр аптăра пуçланă. Пурте: «Шыв! Шыв!» — тесе кăшкăрса Турăран ыйта пуçланă. Пуринчен ытла икĕ кайăк — Шаланкăпа Ула курак кăшкăрнă. Турă вара çав икĕ кайăка çăл чавма хушнă.

Шаланкă Турă хушнине йышăнса: «Шыв епле чавса кăларас-ши?» — тесе шухăшласа çăл чавмалли вырăн шыранă. Ула курак çав вăхăтра: «Епле пыра тăрантарас-ши?» — тесе шухăшласа хăрăк турат çинче ларнă. Шаланкă пĕр лупашкаллă вырăна тĕлленĕ те çавăнта çăл чавма тытăннă. Вăл çичĕ кун та çичĕ çĕр пĕрре канмасăр çĕре чакаласа çăл тума тăрăшнă. Çичĕ кун ĕçленĕ хыççăн çăл куçĕ тухнă, унтан шыв палкаса юхса тухнă. Тăрна куçĕ пек тăп-тăрă шыв çĕр айĕнчен тухса çăл лакăмне тултарнă, унтан лапам тăрăх юхса кайнă. Çапла юхан шывлă çырма пулса тăнă. Пур чĕр чунсем савăнса шыва ĕçнĕ, ăшĕсене кантарнă.

Ула курак, çăл чавнă çĕре пырса та пăхмансăр, йывăç çинче анчах ларса вăхăта ирттернĕскер, шыв юхнине курсанах шыв лупашки патне вĕçсе анса пылчăк çинче выртса йăваланнă та Турă патне вĕçсе кайнă. Вăл Турра улталаса каланă:

— Эпĕ эс хушнине турăм: çĕр айĕнчен шыв чаваласа кăлартăм, çĕре чаваласа йăлт вараланттăм. Шыв тухсанах сан патне васкаса пĕлтерме килтĕм, — тенĕ.

Турри Ула курак чăнах та пылчăкпа вараланнине курнă тата пĕлĕт çинчен çĕр çине пăхнă та чăнах та шыв юхса выртнине асăрханă. Çавăнпа вăл Ула курак каланине ĕненсе ăна мухтанă тата пилленĕ:

— Эсĕ çĕр çинчи чĕр чунсемшĕн питĕ усăллă ĕç турăн, çавăнпа сана урăх ĕç памастăп: çак ĕçÿпех тăранса ĕмĕрÿне ирттерĕн, ытти кайăксем хушшинче пуçна кĕçĕне хурса çÿремĕн, — тенĕ.

Çапла Ула курак ултавпа Турăран пиллĕх илсе аннă.

Курак Турă патĕнче пулнă вăхăтра Шаланкă Турă патне вараланнă тумтирпе тата пит-куçпа кайма аван мар тесе çăвăннă-тасалнă. Тасалсатирпейленсе çитсен вăл савăнса, хавасланса Турă патне вĕçсе кайнă. Вăл чĕререн савăнса шыв чавса кăларни çинчен пĕлтернĕ. Вăл каланă:

— Аслă Турă, эпĕ эс хушнине турăм: çичĕ кун та çичĕ çĕр шыв кăларас тесе çĕре чаврăм, юлашкинчен çăл куçĕ тупрăм, шыв кăлартăм, — тенĕ.

Турă Шаланкă çине пăхнă та вăл хăй те, тумтирĕ те тап-таса пулнине курнă, ниçта та пылчăк палăрман. Тата ăна Шаланкă иккĕмĕш пулса килни вăл шыв тухни çинчен пĕлтерме васкаманнине кăтартнă пек туйăннă. Çавăнпа вăл Шаланкă каланине ĕненмен, ăнаултавçă вырăнне хунă. Ăна тав тăвас вырăнне ылханма тытăннă. Турă каланă:

— Çук, шыва эсĕ кăларман, ăна Ула курак кăларнă. Вăл мана ун çинчен пасăрах килсе пĕлтерчĕ. Вăл çăл чавса пылчăкланнине хам та куртăм. Эсĕ мана улталама шухăшларăн. Çавăнпа эсĕ Ула курак кăларнă шыва ĕçеймĕн, çумăр шывне анчах ĕçĕн, хăвăн ĕмĕрÿне шывсăр аптраса ирттерĕн, — тенĕ.

Шаланкă кайăк айăпсăр ылхану илсе, Ула курака тарăхса аннă вара çĕр çине.

Çавăнпа Шаланкăпа Ула курак пĕр-пĕрне тăшман пулса тăраççĕ. Шаланкă Ула курака мĕн те пулин тунă пулĕччĕ, анчах лешĕ Турă пиллĕхĕпе хӳтĕленсе пурăнать. Шаланкă, Ула курак Турра та улталанине, хăйĕн телейне те тивĕççĕр илнине пĕлсе тăраканскер, Курака тивĕçлипе кураймасть. Вăл çĕртен тухакан шыва ниепле те ĕçеймест. Шывсăр аптрасан вăл сывлăшра ярăнса çӳлелле пăхса макăрать, пи-пи! тесе кăшкăрать. Çапла кăшкăрса вăл Турăран çумăр ыйтать. Турă унăн сассине илтсе ăна хĕрхенет те çӳлтен çумăр çутарать. Шаланкă вара çумăр шывне ĕçсе тăранать. Шаланкă çумăр ыйтса илни этемсемшĕн те, выльăх-чĕрлĕхсемшĕн те, йывăç-курăксемшĕн те пит паха. Çумăр Ула курака анчах кирлĕ мар. Шаланкă пи-пи! кăшкăрса çумăр ыйтнă вăхăтра Ула курак та кăшкăрать. Вăл карк! карк! тесе кăшкăрать. Ку вăл «кирлĕ мар! кирлĕ мар!» тени пулать. Шаланкăпа Ула курак кăшкăрни тăрăх çынсем çумăр пулассине пĕлеççĕ.

## 394

Пăван апат шырама вĕçсе каять. Нимĕн те тупаймасăр этем ӳтне çыртса илет тет. Турă патне этем çинчен усал сăмах калама вĕçсе кайрĕ тет. Турă патне çитсе унран: «Мĕнле ĕçпе килтĕн?» — тесе ыйтать тет Турă.

Пăванĕ калас тесе чĕлхине кăларать. Шăп çав вăхăтра Чĕкеç вĕçсе пырать тет те этем çинчен усал ан калатăр тесе ун чĕлхине çыртса татать тет. Леш Пăванĕ çилленнипе Чĕкеç хӳрине çыртса илет тет. Çапла вара Чĕкеç хӳри икĕ вĕçлĕ пулнă тет.

## 395

Пĕр çуллахи кун чĕкеç уçăлма тухнă тет. Ку чăр-р-р-латтарса вĕçсе çӳрени чĕр чунсене йăлăхтарса çитерне тет, хăй те ывăнса çитнĕ тет. А-а-ах, ку чĕкеçе мĕнле тавăрам-ши тесе шутласа выртать çĕлен. Нумай та пулмарĕ, чĕкеç шăтăк кимĕ çине канма пырса ларчĕ тет. Çакна курсан çĕлен савăнсах кайнă. Вăрттăн кăна шуса пычĕ тет те кимĕ патне, пуçне шăтăкран чикрĕ тет те чĕкеçе хӳринчен кап! кăна хыпса илчĕ тет. Чĕкеç малалла туртăнчĕ тет те вĕçсе каяс тесе, хӳри çĕлен çыртнă тĕлĕнчен татăлчĕ тет. Çавăн хыççăн чĕкеç катăк хӳреллĕ пулса юлнă тет.

## 396

Çĕр çине Турă шыв тултарсан пĕр Ной ятлă çын кимĕ ăшне кĕрет тет. Çав Нойăн киммине шăши шăтарса шăтăк тăвать тет. Кăна çĕлен курать тет те пуçне пырса чиксе питĕрсе хурать тет. Ной кăна курсан çĕлене ыр ятлă тăвать: «Çитерес ăна», — тет. Пăвана яраççĕ çĕлен валли апат шырама. Пăван вĕçсе тухса каять те нимĕн çыртса килме тупаймасăр этем ӳтне çыртса илет.

— Илсе килтĕм, — тет.

— Мĕн илсе килтĕн? — тесе ыйтать Турă.

Пăванĕ мĕн илсе килнине пĕлтерес тесе чĕлхине кăларать. Шăп çав самантра чĕкеç вĕçсе пырать те ун чĕлхине çыртса татать. Леш пăванĕ ним калаймасăрах калла нăрласа каять. Чĕкеçе уншăн çĕлен çилленет, çилленнипе унăн хӳрине çыртса татса илет тет. Çавăнпа çапла икĕ вĕçлĕ пулнă тет чĕкеçĕн хӳри.

397

Ĕлĕк пĕрре Çĕлен Вăрăм тунана (Чĕрккие) тĕл пулнă та каланă:

— Тĕнчере кам юнĕ тутлăрах, çавна пĕлсе кил-ха, — тенĕ.

Вăрăм туна:

— Юрĕ, — тенĕ те вара пĕтĕм тĕнчери чĕр чунсен юнĕсене астивсе сăнаса тухнă.

Пуринчен тутлăраххи этемĕн юнĕ пулнă. Çĕлен патне таврăнсан Вăрăм туна: «Этем юнĕ пек тутли çук», — тесе каласшăн пулнă. Анчах çав хушăрах Чĕкеç вĕçсе çитнĕ. Вăрăм туна калама çăварне уçсанах Чĕкеç ăна чарса каланă:

— Каличчен малтан чĕлхӳне кăларса кăтарт-ха, ун хыççăн калăпăр: кам юнĕ пуринчен тутлăраххине эпĕ те пĕлетĕп, — тенĕ.

Вăрăм туна чĕлхине кăтартнă. Чĕкеç унăн чĕлхине кап! сăхнă та татса илнĕ. Вара Вăрăм туна Çĕлене калас сăмахĕсене калайман: Çĕлен çывăхĕнче найлатса кăна вĕçнĕ. Çĕлен Чĕкеçе çилленсе ăна хыпса çăварĕпе хĕстернĕ. Анчах çăмăл кĕлеткеллĕ, вăйлă çунатлă Чĕкеç Çĕлен çăварĕнчен вĕçерĕнсе тарнă, хӳрин пайĕ анчах татăлса юлнă.

Çавăнтанпа Чĕкеç хӳри икĕ юплĕ ĕнтĕ. Вăрăм туна та çавăнтанпа татăк чĕлхеллĕ найăлти пулса юлнă. Çĕлен камăн юнĕ пуринчен тутлăраххине пĕлеймесĕрех юлнă. Вăл ăна пĕлсен этем юнне ĕçсе пурăннă пулĕччĕ.

Чĕкеç этем хутне кĕнĕшĕн, ăна инкекрен хăтарнăшăн чăвашсем чĕкеçе ырă кайăк тесе хисеплеççĕ. Ăна «Турă патĕнчен килнĕ кайăк» теççĕ. Чĕкеç киле явăнса йăва тусан савăнаççĕ. Чĕкеçе тытсан та пуçне çупа сĕрсе яма хушаççĕ.

398

Чĕкеç вут йăтса çӳреме пултарать, çавăнпа унăн пĕсехи те хĕрлĕ. Вĕсен йăвине те аркатма юрамасть. Унăн йăвине аркатсан чĕкеç çилленнипе пӳрте вут тĕртсе яма пултарать тет.

399

Кайăксем кăнтăралла кайнă чух вĕсене икĕ çын пĕчик калиткаран кăларса яраççĕ теççĕ. Кайăксем çав пĕчик алăкран кайнă чухне те, килнĕ чухне те тухмалла тет. Çав калиткара тăракансенчен пĕри чăлах, тепри суккăр теççĕ. Кайăксем тухнине чăлаххи курать тет те суккăррине: «Çап, çап, çап!» — тесе калать пулать. Хăйĕн çапкăчĕ — аллисем çук пулать. Кайăксем çавăнпа нумай пĕтеççĕ пулать.

Çил алăкне те пĕр чăлахпа пĕр суккăр уçса шалт хупаймасăр хăшкăлаççĕ тет.

## Тискер кайăксем

400

Ĕлĕк пĕр мулкач вăрманпа чупса пырать тет. Чупса пынă чух мулкач çул çинче пăлан мăйракине курах каять тет. Хай мулкачăн мăйракаллă пулас килнипе вăл мăйракана хăйĕн пуçĕ çине лартать тет. «Халĕ ĕнтĕ манран пур чĕр чун хăрама пуçлать», — тесе шутлать тет хăй. Çавăнтах

тĕмĕ хушшинче тем чаштăртатни илтĕнет тет. Мулкач хăранипе чупма тăрать тет, анчах та пуçĕ йывăр пулнипе такăнса ӳкет тет. Тĕмĕсем хушшинчен Пăлан тухать тет. Вăл Мулкача курсан çапла калать: «Сана мăйрака мар, вăрăм хăлха кирлĕ». Вара вăл Мулкача хăлхинчен туртать тет. Çавăнтан пуçласа Мулкачăн хăлхи вăрăм тет.

### 401

Пĕр Куян питĕ мухтанма юратнă тет. Пĕррехинче çак Куян Тилле тĕл пулнă тет. Куян Тилĕ умĕнче мухтанса никамран та хăрамастăп тесе паттăрланнă тет. Çав вăхăтрах вăрманта пăшал пенĕ сасă янраса кайрĕ тет. Куян хăранипе тĕмĕсем хыçне сикрĕ тет, такăнса ӳкрĕ тет те тутине катса пăрахрĕ тет. Çавăнтанпа Куянăн тути катăк тет, мухтанма та пăрахрĕ тет.

### 402

Пĕрре Куян çиес килнипе пахчана кĕнĕ тет. Унта мăнă кăна Парпус выртнă тет. Çавă кап! ярса тытать тет Куян хӳринчен, лешĕ вара татăк хӳрипех тухса тарать тет.

Вот пĕрре Куян выçă чух яла килет тет. Кунти пĕр карчăк икерч пĕçерет тет. Кĕрет тет Куянĕ йăпшăнса икерч вăрлама тесе... Карчăкĕ хытă пулнă тет. Çав вара вĕри çатма аврипех тутинчен чышать тет. Куянĕн вара халь те тути катăк.

### 403

Мулкач малтан питĕ каппайчăк та мухтанчăк пулнă тет. Хăй пĕчĕк пулсан та пуçне каçăртса мăнаçлăн утса çӳренĕ тет.

Пĕррехинче пырать тет Мулкач çулпа лаплаттарса утса. Хыçра пыракан Упа пĕчĕкскерне асăрхаман та, хӳри çине пусах панă тет. Мулкач малалла туртăннă тет, хӳри татăлсах кайнă тет. Çаврăнса пăхмасăрах хӳри ыратнипе айккинелле тапса сикнĕ тет.

Çавăнтанпа халь Мулкач кĕске хӳреллĕ хăравçă куян пулса юлнă тет.

### 404

Турă амăшĕ çине тăрсах вут хутнă тет пĕр çуллахи кун. Хăй çаннисене тавăрнă, хĕремесленсе кайнă тет, кăмакаран турчкапа кăвар кăларать тет хуран айне. Çакăнта Мулкач сиксе тухать тет те: «Эй, ват кинемей, çуллахи шăрăх кун мĕн вут хутса аппаланан», — тесе калать тет. Турă амăшĕ кун çине питĕ çилленет тет. Мĕнле-ха çав пĕчĕк кăна чĕр чун ăна кансĕрлеме пултарчĕ-ха! Çилли тулса кайнă енне Турă амăшĕ вĕри турчкана кăмакаран кăларать тет те пĕррех тĕкет Мулкача тутаран. Мулкач çаврăнчĕ те яра пачĕ тет тарма. «А-а-а, эсĕ манран тарма-и-ха?!» — терĕ тет Турă амăшĕ, çунакан вутпуççипе пĕррех печĕ тет Мулкача. Мулкач тарнипе хăйĕн хӳри çунса талса* ӳкнине те сисмерĕ тет. Çапла вара, ĕçлекен çынсене уссăрах чăрмантарса ан çӳре.

* Татăлса.

### 405

Ĕлĕк пĕр Куян укăлча тулашĕпе чупса пырать тет. Шăп та шай çуркунне пулнă-мĕн. Çулĕ çинче пăр выртнă тет. Чупса пынă çĕртех ури яр-р! шуса кайрĕ тет те çак Куянăн, çап-çутă пăр çине печĕ-ўкрĕ тет хайхискер. Унтан сиксе тăчĕ тет те ыйтать тет:

— Пăр, Пăр, мĕн чул тану пур санăн?

Пăрĕ калать:

— Танăма кура хăватăм пур, — тет.

Куянĕ калать:

— Ăмма хĕвел тухсан хĕвелпе ирĕлетĕн? — тет.

Пăр калать:

— Хĕвел манран аслăрах, — тет.

Куян Хĕвел патне чупать. Эй, чупать, эй, чупать! Хĕвел патне пырса çитрĕ тет. Куян калать:

— Хĕвел, Хĕвел, мĕн чул тану пур санăн? — тет.

Хĕвел калать:

— Танăма кура хăватăм пур, — тет.

Куян калать:

— Ăмма пĕлĕт тухсан пĕлĕт айне пулатăн? — тет.

Хĕвел калать:

— Пĕлĕт манран аслăрах, — тет.

Куян Пĕлĕт патне чупать тет. Эй, чупать, эй, чупать! Пĕлĕт патне çитет. Куян калать:

— Пĕлĕт, Пĕлĕт, мĕн чул тану пур санăн? — тет.

Пĕлĕт калать:

— Танăма кура хăватăм пур, — тет.

Куян калать:

— Ăмма çил тухсан саланса пĕтетĕн? — тет.

Пĕлĕт калать:

— Çил манран аслăрах, — тет.

Куян Çил патне чупать тет. Эй, чупать, эй, чупать! Çил патне пырса та çитет.

— Çил, Çил, мĕн чул тану пур санăн?

Çил калать:

— Танăма кура хăватăм пур, — тет.

Куян калать:

— Ăмма Турă чарсан чарăнан? — тет.

Çил калать:

— Турă манран аслăрах, — тет.

Куян Турă патне чупать. Эй, чупать, эй, чупать! Турă патне çитрĕ тет. Турри кăмака хутнă тет те кăварне туртса тăрать тет. Куян калать:

— Турă, мĕн чул тану пур санăн? — тет.

Турри чĕнмест тет. Куян калать тет:

— Турă, Турă, мĕн чул тану пур санăн? — тет.

Турă татах чĕнмест тет. Куян калать:

— Турă, Турă, мĕн чул тану пур санăн? — тет.

Турри çаплах кăвар туртать тет. Турчăки хĕп-хĕрлĕ хĕрсе çитнĕ тет. Куянĕ çаплах йĕрĕнтерсе тăрать тет. Тарăхрĕ тет те Турă Куяна тутинчен кат! тутарчĕ тет турчăкапа. Куянăн тути катăлчĕ кайрĕ тет. Вашт! кăна сирпĕнчĕ

тет Куян Турӑ патӗнчен. Тарса-тарса кӑна пыратчӗ тет, анчах Турри аллине вутпуҫҫи тытнӑ тет те яра пачӗ тет Куяна хыҫалтан. Куянӑн хӳри татӑлса кайрӗ тет. Куян юрлать тет:

> Турчӑкапа тӗртрӗ те —
> Тутам катӑк пулайчӗ,
> Вутпуҫҫипе печӗ те —
> Хӳрем татӑк пулайчӗ...

Ҫавӑнпа Куянӑн тути катӑк тет, хӳри татӑк тет.

## 406

Куян уҫалма тухнӑ тет. Ку Тӑвайккине курать те унран ыйтать:

— Эсӗ чи вӑйли пуль тӗнчере? Эсӗ вӗт пысӑк.

— Эпӗ чи вӑйли мар, манран та вӑйли пур. У Калта. Вӑл мана шӑтарса ҫӳрет, — тет Тӑвайкки.

Куян Калта патне каять те унран ыйтать:

— Эсӗ чи вӑйли пуль тӗнчере?

— Эпӗ мар чи вӑйли, манран вӑйли те пур. У Этем.

Хайхи Куян Этем патне каять те унран ыйтать.

— Эсӗ-и тӗнчере чи вӑйли?

Этем пӳртӗнче урай шӑлать.

— Эпӗ ҫав чи вӑйли тӗнчере, — тесе Куяна шӑлса ывӑтать те алӑкне хупать тет. Куянӑн хӳри хӗсӗнсе ларать тет. Хӑранипе ку малалла тапса сикет. Вара хӳри татӑлса юлать. Ҫавӑнтан вара кӗске хӳреллӗ те хӑравҫӑ пулать тет Куян.

## 407

Турӑ амӑшӗ вӑрманти, уйри тискер кайӑксене пуҫтарчӗ тет те шутларӗ тет: «Тавай тепӗр хытӑ чупакана, уйра та, вӑрманта та пурӑнакана туса ярам, никама та ан тивтӗр, никама та ан хӑраттӑр, вӑрӑм хӳреллӗ, вӑрӑм хӑлхаллӑ, чармака куҫлӑ туса ярам», — тесе Турӑ амӑшӗ Мулкача туса кӑларса ячӗ тет.

Мулкач ҫуралса тӗнчене тухсан хӑйне хӑй вӑйлӑ та паттӑр шутлать. Хӑйӗнчен хӑраканнине шыраса ҫӳреме пуҫлать. Мулкачӑн хӳри вӑрӑм, хӑлхи вӑрӑм. Мулкач кӗрсе кайрӗ Тан пӑр ҫине, тӑрст! тӑрст! сикет.

— Тан пӑр, Тан пӑр! Сан мӗн чул вӑй-хӑвату пур? — тет.

Тан пӑр калать тет:

— Хама валли пур!

Мулкач калать тет:

— А ху! Ху Хӗвел пулсан, Хӗвел пулсан ирӗлен-ҫке! — тет.

— Хӗвел вӑл манран аслӑрах, — терӗ тет Тан пӑр.

Мулкач вара Хӗвел патне вӗҫтерчӗ тет. Мулкач Хӗвел патне ҫитрӗ тет те калать:

— Хӗвел, Хӗвел, сан мӗн чул вӑй-хӑвату пур? — тесе ыйтать тет Мулкач.

— Хама тайӑм пур, — тет Хӗвел.

— А ху! А ху! Ҫумӑр пӗлӗчӗсем сана хупласа хураҫҫӗ-ҫке! — тесе калать тет Мулкач Хӗвеле.

— Пĕлĕтсем вĕсем манран аслăрах! — терĕ тет Хĕвел. Мулкач тăнласа та тăмарĕ, яра пачĕ хура çумăр пĕлĕчĕсем патне. Чупса çитет Мулкач пĕлĕтсем патне.

— Пĕлĕтçĕм, Пĕлĕт! Сан мĕн чул вăй-хăват пур? — тет Мулкач.

— Хама тайăм пур! — тесе каласçĕ тет Мулкача хирĕç хура çумăр пĕлĕчĕсем.

— А хăвăр Çил тухсан саланса каятăр-çке, Çил пулсан саланса пĕтетĕр, Çил хуса каять-çке хăвăра! — тесе калать тет Мулкач пĕлĕтсене.

— Çил вăл пирĕнтен аслă, — теççĕ тет Мулкача пĕлĕтсем. Мулкач çавна илтсен яра пачĕ, вĕçтерчĕ тет Çил патне. Чупсан-чупсан çитрĕ ку Мулкач Çил патне. Хашкать тет хăй.

— Çилçĕм, Çил! Сан мĕн чул хăвату пур? — тет. Çил Мулкача хирĕç:

— Хама тайăм пур, — тесе калать тет.

— А-а, эс икĕ сăртран пĕр сăрт тувимастăн-çке! — тет Мулкач Çиле хирĕç.

— Икĕ сăрт вĕсем манран аслăрах, — тет Çил.

Пырать Мулкач Сăрт çине те калать:

— Сăртçăм, Сăрт! Сан мĕн чул вăй-хăвату пур? — тесе Сăрт тăрăх Мулкач каялла-малалла чупса çÿрет тет.

— Хама тайăм пур! — тесе калать тет Сăрчĕ.

— А-а, ху! Шăши-арлан чавалтанисене чаримастăн-çке! — тет Мулкач Сăрта.

— Шăши-арлансем вĕсем манран аслă, — тет Мулкача Сăрт.

Кайрĕ тет вара Мулкач Арлан патне. Пычĕ тет Мулкач Арлан патне, Арлана хирĕç ларчĕ тет те ыйтать тет:

— Арланçăм, Арлан! Сан мĕн чул хăвату пур? — тесе.

Арлан тутипе мăшт-машт, хăр! турĕ тет те:

— Хам валли пур! — терĕ тет Мулкача хирĕç.

Мулкач аяккалла сиксе ларчĕ тет те485 ларĕ тет:

— А-а, ху эппин! Йытăран хăран-çке, Йытта курсан таран-çке! — терĕ тет Мулкач Арлана.

Арлан каларĕ тет:

— Йытă вăл манран вăйлăрах, аслăрах çав! — терĕ тет Мулкача.

Йытăран Мулкачи хăй те хăрать тет.

— Йыттăн çăварĕ пысăк çав! — терĕ тет Мулкач. Мулкач хуллен-хуллен васкамасăр Йытă патне çитрĕ тет те хуллен Йытăран ыйтать:

— Йытăçăм, Йыт! Сан мĕн чул хăвату пур? — тесе. Хăй кутăн чакатех тет. Йытти:

— Хама тайăм пур! — тесе пăхса тăрать тет.

— А-а-а! Хырăму выççан Этем куçĕнчен пăхан-çке ху, — тет Мулкач. Йытă кучĕ çине хÿрине чăсса каялла кайса ларчĕ тет те:

— Этем манран аслă çав, — терĕ тет.

Мулкач каялла çаврăнчĕ тет те уткăнчĕ тет Этем патне. Мулкач пынине курсан Этем чарăнса тăчĕ тет. Этемми ыраш пуссине тыр пулать-и тесе пăхма тухнă тет. Кив тыррине çисе янă тет Этемĕ. Мулкач Этем патне çитрĕ тет те:

— Этемçĕм, Этем! Сан мĕн чул хăвату пур? — тет.

Этем:

— Хама тайăм! Хама тайăм пур! — тет Мулкача хирĕç.

— А-а! Эсĕ хырăму выççан Турăран ыйтан-çке! Тур патăр тетĕн-çке, — тет Мулкач Этеме.

Этем калать:

— Турă вăл манран та аслă çав, пуринчен те аслă, — тет те çӳлелле пăхса сăхсăхса Турра пуççапса илчĕ тет Этемми: «Çак тырра, Турă, пуçтарса илме пар! Алла пуçтарса илме пар!» — тесе.

Мулкач пăхса та тăмарĕ тет, кайрĕ тет хăйне çуратакан Тур амăш патне. Тур амăш килтех, тĕпелте кăмака умĕнче юхтари икерчĕ пĕçерсе тăрать тет Мулкач пынă чух. Мулкач пӳрте тĕпĕлт! кĕрсе тăчĕ тет. Пӳрт алăкĕ уçă пулнă, ĕлĕк вут хутсан пӳрт алăкĕ уçă тăнă тĕтĕм тухса кайма, кăмака трупи пулман.

Мулкач тĕпеле Тур амăш патне сиксе пычĕ те кăшкăрсах калать:

— Турăçăм, Турă! Сан мĕн чул хăвату пур?

— Эпĕ сана ĕнер çуратса ятăм, паян манран кулма килме-и? — тесе Турă амăшĕ Мулкача аллинчи çатма аврипе пĕррех тутинчен тĕкрĕ тет. Мулкач тутийĕ катăлса кайрĕ тет. Мулкач каялла тарма çаврăнчĕ, алăк патнелле сикет. Тур амăшĕ часрах турчка илет те Мулкача хăвалама... Мулкач пӳрт алăкĕнчен тулалла тухса ӳкеччен Тур амăш вăрăм турчкапа алăка тĕксе ярса, Мулкач хӳри çине хупса лартса Мулкач вăрăм хӳрине татса пăрахнă тет. Ĕлĕк пӳрт алăкĕсем хальхи пек тулалла мар, шалалла уçăлмалла пулнă тет. Йыт хӳри пек вăрăм хӳреллĕ Мулкач хӳри татăлсах юлчĕ тет. Мулкачăн хӳри кучĕ çумне пĕр пӳрне тăршшĕ тăрса юлнă тет.

Катăк туталлă, татăк хӳреллĕ Мулкач чупать тет уй тăрăх. «Ăçта каяс? Манран хăракан никам та çук», — тесе шутлать.

— Каям та сикем шыва. Шыва путса вилем, — тесе уткăнать тет уйпа Çавал хĕрнелле. Мулкач пынине курсан сурăхсем ушкăнĕпе тĕр-р! тарчĕç тет.

Мулкач шутлать: «Мĕнле, ара? Манран хăракансем те пур-и? Çавах манран хăракансене урăх тĕл пулмасан сикеп шыва», — тесе тата чупать Мулкач. Мулкач çулĕ çинче Курак ларать тет. Курак Мулкач çывăха çитсен вĕçрĕ те кайрĕ тет. Мулкач шутлать: «Ку та манран хăраса тарчĕ. Çавах та виçĕ чĕр чун манран хăракансене тĕл пулмасан сикетĕп шыва», — тесе чупать Мулкач. Шыв хĕррине çитсе пырать. Мулкач шутлать: «Сикеп ĕнтĕ шыва çитсенех!» — тет. Анчах Мулкачран хăраса шыв хĕрринче ларакан Шапа шомпăл! тутарса сикрĕ те шыва ансах кайрĕ. Мулкач, шыва сикме хатĕрленнĕскер, чарăнчĕ, кулянса каларĕ: «Эх-ха-хах! Манран хăрасах шыва сиксе вилчĕ-çке! Пурнас пуль», — тесе Мулкач шыв хĕрринчен каялла çаврăнса кайрĕ тет.

Мулкач Турă патне каçару ыйтма пычĕ тет:

— Каçар мана, Турă. Манран хăраса шыва сикнине те куртăм. Малашне никамран та кулмастăп, никама та хăратмастăп, манран хăраса шыва ан сикчĕр! — тет Тур амăшне Мулкач.

— Каçаратăп сана, каçаратăп, анчах ху айăпа кĕнине паллăлăх туту катăкĕпе хӳрӳ татăкки çаплах юлтăр. Сана хĕрхеннипе çавах сана тăшмансенчен хăтăлма хӳтлĕх парам: аякран сана тăшманусем ан курччăр. Ху тапранмасан сана ан курччăр, çулла çĕр тĕслĕ пул, хĕлле юр пек шурă пул, — терĕ тет Турă Мулкача.

— Юрать, эс каланă пек пултăр, йышăнатăп, — терĕ тет вăрăм хӳререн кĕске хӳреллĕ пулнă, хура мулкачран шурă пулнă мулкач. «Мулкача тытма хӳри кĕске çав!» — теççĕ тет çынсем. Мулкач мĕнле хӳресĕр юлнине пĕлмеççĕ тет.

Юмах пĕтрĕ. Мулкач юлчĕ.

## 408

Ӗлӗк-авал тӗнчере пӗр Мулкач пурӑннӑ. Ун чухне унӑн тути те катӑк пулман, хӳри те ытти чӗр чунсенни пекех вӑрӑм та çӑмлашкаллӑ пулнӑ. Малти урисем те, ытти чӗр чунсенни пекех, кайри урисемпе пӗр тан пулнӑ. Вӑл та хальхи пек сиккелесе мар, ытти чӗр чунсем пекех чупса çӳренӗ. Хӑйӗн йӑваш та ачаш кӑмӑлӗпе çех ытти чӗр чунсенчен уйрӑлса тӑнӑ. Вӑрçма, хирӗçме юратман. Çавӑнпа та ӑна ытти чӗр чунсем сума суман, хӑратса çеç пурӑннӑ, унтан тӗрлӗ майсемпе мӑшкӑлласа кулнӑ. Мулкач хӑравçине пурсӑмӑр та лайӑх пӗлетпӗр ӗнтӗ. Çитменнине, унӑн хӑйӗн тӑшманӗсенчен хӳтӗленсе пурӑнма вырӑн та пулман. Йывӑç айсенче нумай хӳтӗленсе пурӑнас çук çав. Кушак кайӑк та хӑйне пурӑнма шӑтӑк чавать, анчах Мулкачӑн вӑл ӑсталӑхӗ те çук. Çавӑнпа та вӑл тӗнчери чи вӑйлӑ чӗр чунпа туслашма шут тытнӑ. «Ун чухне вара вӑйлӑ чӗр чунтан хӑранипе манран мӑшкӑлласа кулма пӑрахӗç», — шутланӑ вӑл. Ун чухне чӗр чунсем пӗр-пӗринчен тӑрӑхласа кулнӑ пулин те, пӗр-пӗрне çимеççӗ пулнӑ-ха. Ӗçе вӑраха ямасӑр вӑл тӗнчери вӑйлӑ чӗр чунпа паллашас шутпа пӗр çулпа тухса утнӑ. Нумай утнӑ-и, сахал утнӑ-и, вӑл пире паллӑ мар. Мулкач Кушак кайӑка тӗл пулнӑ.

— Кушак кайӑк тус, Кушак кайӑк тус, кала-ха эсӗ мана: эсӗ-и çак çут тӗнчере чи вӑйлӑ чӗрӗ чун? — ыйтнӑ Мулкач Кушак кайӑкран.

— Хытӑ йӑнӑшатӑн эсӗ, Мулкач тус. Эпӗ те сан пекех хӑравçӑ чӗр чун çех. Манран вӑйли Ту пур. Вӑл мана та тӗрлӗрен инкек-синкекрен хӑй çине шӑтӑк чавтарса хӳтӗлесе усрать. Тен, вӑл сана та хӳтӗлесе усрама килӗшӗ, — сӗннӗ Кушак кайӑк Мулкача.

Вара Мулкач ӑна тав тунӑ та Ту патне кайнӑ. Нумай кайнӑ-и, сахал кайнӑ-и, вӑл пире паллӑ мар, Мулкач Ту патне çитнӗ.

— Ту тус, Ту тус, эсӗ-и çак тӗнчере чи вӑйли? — ыйтнӑ Мулкач Ту патне çитсен.

— Эсӗ хытӑ йӑнӑшатӑн, Мулкач тус. Манра мӗн вӑйӗсем шыратӑн. Чи вӑйли çак тӗнчере Тыркас пулӗ тесе шутлатӑп. Вӑл ман çийӗме хамран ыйтмасӑрах шӑтӑк-шатӑк туса пӗтерет. Ун патне кайса пӑх-ха, — тенӗ Ту Мулкача. Лешӗ ӑна тав тунӑ та Тыркас шырама тухса кайнӑ. Нумаях та каяйман вӑл, Тыркаса тӗл пулнӑ та унпа сӑмах пуçласа янӑ.

— Эх, Тыркас тус, Тыркас тус. Эсӗ-и çак тӗнчере чи вӑйли? Ту эсӗ вӑйли çинчен мана каласа пачӗ.

— Хытӑ йӑнӑшатӑн эсӗ, Мулкач тус. Эпӗ вӑйли — мӗн вӑйли. Акӑ Тилӗ тус вара чӑнахах та чи вӑйли. Эсӗ халӗ ун патне тӳрех кайса пӑхма пултаратӑн, — сӗннӗ Тыркас Мулкача. Вара Мулкач Тыркаса тав тунӑ та Тилле шырама тухса кайнӑ. Нумаях та каяйман, вӑл чее Тилле тӗл пулнӑ.

— Эй, Тилӗ тус, эсӗ çакӑ тӗнчере чи вӑйлӑ чӗрӗ чун тесе илтрӗм Тыркасран. Ку сӑмах чӑнах та тӗрӗс пулсан айта иккӗн туслашар, — тенӗ Мулкач Тилле.

— Хытӑ йӑнӑшатӑн, Мулкач тус. Эпӗ вӑйли — мӗн вӑйли. Парсуй (вӗшле) йытӑ вара чӑнахах та чи вӑйли. Çавӑнпа та пӗр шиксӗр унта кайма пултаран, — ответленӗ Тилӗ Мулкача. Мулкач вара Тилле тав тунӑ та Парсуй йытта шырама тухса кайнӑ. Вӑл ӑна ял патӗнчи пӗр улӑхра тӗл пулнӑ та унпа çапла сӑмах пуçарса янӑ:

— Эй, Йытӑ тус, Йытӑ тус, çут тӗнчере эсӗ чи вӑйлӑ чӗрӗ чун тесе илтрӗм эпӗ Тилӗрен. Айта иккӗн туслашар, иккӗн пӗрле туслашсан мана та савӑнӑçлӑрах пулӗ, сана та кичем пулас çук.

Анчах пĕри те хăравçă та йăваш Мулкачпа туслашасшăн пулман. Çавăнпа та Йытă ăна Кашкăр патне, Кашкăрĕ Арăслан патне, Арăсланĕ Этем патне янă. Анчах Этемĕн те унпа туслашасси килмен, ăна Турă патне янă.

— Ăçта пурăнать-ха вăл Турă? — ыйтнă Мулкач Этемрен.

— Вăл тĕнчере те пĕр çех. Пурăнасса вара çӳлте, пĕлĕт çинче, пурăнать, — ответленĕ Этем Мулкача.

— Мĕнле хăпарас-ха манăн унта?

— Виçĕ сутка çурçĕрелле кайсассăн çитĕн эсĕ питĕ çӳллĕ ту патне. Вăл тăвăн тăрри пĕлĕтрен те иртсе каять. Çавă çӳллĕ ту тăрринче питĕ чаплă керменре Турă пурăнать.

Мулкач Этеме тав тунă та Турă патне кайма тухнă. Тăвĕ патне çитиччен чăнахах та виçĕ сутка, ун тăррине хăпарса тата çичĕ сутка иртрĕ. Ку хушăра выçăллă-тутăллă çех пынипе Мулкач пĕтĕмпех начарланнă, апла пулин те вăл Турă патне çитнĕ-çитнех.

Мулкач çитнĕ вăхăтра Турă патупка* хутса ларнă пулнă. Мулкач ун патне çитсенех çĕре çити пуç тайнă та çапла сăмах пуçарса янă:

— Эй, Турă тус, эсĕ çак çут тĕнчере чи вăйли тесе пĕлтерчĕ мана Этем тус. Айта-ха иккĕн туслашар. Иккĕн пĕрле туслашсан мана та савăнăçлăрах пулĕ, сана та кичем пулас çук.

Ку сăмахсем Турă кăмăлне кайман. Çавăнпа та вăл хĕрнĕ тимĕр патакпа Мулкач тутинчен тĕртнĕ те тутине çурса пăрахнă. Унтан вăл Мулкача килĕнчен хăваласа кăларса янă. Хăваласа кăларнă чух тепре уринчен çапнă та икĕ малти урине те шалтăрах хуçса пăрахнă, алăкĕпе хĕстерсе хӳрине татса юлнă. Аван-ха, çапах та пулин унăн малти урисем тӳрленнĕ, атту вăл çӳреес те çукчĕ. Анчах унăн малти урисем кайри урисенчен кĕске пулса юлнă. Ахаль те хăравçă Мулкач хăваласа кăларнă чух вуççех** хытă хăранă. Хытă хăранипе унăн куçĕсем чармакланса кайнă. Апла пулин те Мулкачăн хăй инкекĕ çинчен ытти чĕр чунсене тĕрĕссĕн каласа парасси килмен, мĕншĕн тесен вĕсем унран тата ытларах тăрăхласа кулма пултарнă. Çавăнпа та вăл Турă патĕнчен ансанах çутă пăр çине кайса ларнă та макра-макра çак юрра юрланă:

Тан пăр çине тапа-тапа
Урам кĕске пулчĕ, пулчĕ.
Çут пăр çине лара-лара
Хӳрем кĕске пулчĕ, пулчĕ.
Сив тан шывне çула-çула
Тутам катăк пулчĕ, пулчĕ.
Çут çăлтăрсем сăва-сăва
Куçăм чармак пулчĕ, пулчĕ.

Çавăнпа та халĕ Мулкачăн малти урисемпе хӳри кĕске, тути катăк, куçĕ чармак. Пурăнасса вара халĕ те пур чĕр чунран та хăраса пурăнать. Ахаль мар ĕнтĕ ăна хăравçă Мулкач теççĕ.

**409**

Уйра-мĕнте кашкăр тĕл пулсан пирĕн чăвашра вара: «Ырă Пихампар, йăттăна чар», — тесе сăмах караççĕ. Кашкăр çиес выльăхăн тĕкĕ-çӳçĕ пĕр

* Пĕчĕк кăмака.
** Питех.

уйăх малтан кашкăр çăварне пырса кĕрет тет. Турă пӳрет тет ăна. Вăл кашкăр пĕр уйăх çил çăтать тет, пĕр уйăх çĕрĕк пăяв çиет тет, тепĕр уйăх выльăх тытса çиет тет.

## 410

Упа, кашкăр выльăха Турă хушмасăр тытса çимест тет. Хăш-пĕр уйăхсенче кашкăр ут пăхĕ çиет тет, татăк вĕренсем...

Пĕр çыннăн аш çиес килнĕ тет. Кайрĕ тет вăрмана шырама. Нимех те тытаймарĕ тет. Хăй асăрхамасăрах пĕр куккăр, тураттисемпе çĕрех перĕннĕ йывăç айĕнчен тухрĕ тет, кашкăр пулса тăчĕ тет. Вара карĕ тет Турăран мĕн çимеллине ыйтма. Турă ăна пĕччен пурăнакан хĕрарăмăн лашине тытса çиме хушрĕ тет. Тепрехинче пăру тытса çиме, ача çиме хушрĕ тет. Çӳресен-çӳресен каллех çав йывăç айĕнчен тухрĕ тет те çын пулса тăчĕ тет. Вара килне карĕ тет те, арăмĕ макăрса ларать тет. Лаши те, пăру та, ача та çук тет.

## 411

Пĕр тăлăха юлнă хĕрарăм пуртă илсе вăрмана кайнă тет. Вăрмана çитсен пурттине юман кутне пытарса хурса хăй вăрман тăрăх кайнă. Килсен пăхать те — пуртти çук, вăрланă. Вара макăрма тапратрĕ тет. Макăрсан-макăрсан выртса йăваланса упа пулса тăчĕ тет. Упа çавăнпа икĕ уран çӳрет тет, тата унăн кайри ура лапписем этемĕнни пек тет. Çапла вара упа пулса кайнă тет.

## 412

Ĕлĕкех кинĕпе хунямăшĕ пурăнаççĕ тет. Хунямăшĕ кашни каçах таçта кайса çĕтсе çӳрет тет те çур çĕрте киле пит ырса килет тет. Килет тет те çывăрма выртать тет.

Кинĕ пĕрре çакна сыхлама каять. Хунямăшĕ вăрмана кĕчĕ тет те кукăр хурăн кучĕ урлă каçрĕ тет. Вара упа пулса тăчĕ тет. Кинĕ те кукăр хурăн урлă сикрĕ тет. Кинĕ те упа пулчĕ тет. Тулькка сикнĕ чух хăрах урипе кукăр хурăн кутне перĕнчĕ тет. Вара çав ури çын ури пулса юлчĕ тет.

Вара кинĕпе хунямăш те вăрмана мĕкĕрсе кĕрсе кайрĕç тет. Тек çын пулаймарĕç тет вĕсем. Кинĕ хурăн кутне урипе перĕнмен пулсан пулатчĕç тет, халь пулаймарĕç тет.

## 413

Пăрăнтăкпа Çӳлевĕç вăрманта тĕл пулнă тет. Пăрăнтăкĕ калать тет: «Ыран çумăр пулать», — тет. Çӳлевĕçĕ: «Пулмасть», — тесе калать тет. Çӳлевĕçĕн çумăр çутарас килмен тет. Çапла тавлашса каяççĕ тет вĕсем. Çӳлевĕçĕ тарăхса кайса Пăрăнтăка çурăмĕ тăрăх чăрмаласа илет тет. Çавăнтанпа Пăрăнтăкăн çурăмĕ çинче тăватă шурă йĕр пур. Вăл кашни çумăр çăвас умĕн тухса кăшкăрать тет, хăйĕн тĕрĕслĕхне кăтартса, Çӳлевĕç умĕнче парăнасшăн мар.

## 414

Сăвăр питĕ макăрать тет çын тытсан; куççулĕсене шăлса макăрать, çавăнпа ăна çынран пулнă теççĕ.

## 415

Вӑл сӑвӑрсем акӑ ӑҫтан пулса кайнӑ тет. Ӗлӗк пӗр пуппалан начаркка-рах чӑвашӑн анисем юнашар пулнӑ тет. Акаҫҫӗ тет те кӗсем, пупӑн тырри начар пулат тет, лешӗн тырри лайӑх пулат тет. Пуп кунӑн тыррине хӑй йышӑнат тет, хӑй анине ҫук ҫынна парат тет. Леш калат тет: «Манӑн ку мар, лешӗ манӑн», — тесе калат тет. Хайхисем тавлаша-тавлаша сута каяҫҫӗ тет. Сутсем кӗсен анисене килсе пӑхмалла тет. Пуп хӑйӗн пӗр ачипе пӗр хӗрне анасем ҫине ертсе каят тет те леш ҫук ҫын ани ҫине нӳхреп пекки алтса ку ачапа хӗрне ҫавӑнта кӗртсе лартат тет. Кунта килсе ыйтӗҫ, эсир вара: «Ку пупӑн, леш ҫукӑн», — тесе ларӑр тесе калат тет ачисене. Хайхи-сене тӑпрапа курӑнмалла мар витсе хӑварат тет те каят тет килне. Акӑ нумай тӑмаҫҫӗ, килеҫҫӗ тет хай сутсем. Каяҫҫӗ тет пурте кӗсем анасем патне. Ҫитеҫҫӗ тет те аптраҫҫӗ тет: ниҫтан хӑшӗ хӑшинне пӗлме ҫук тет. Пуп калат тет: «Атьӑр, ҫӗртен хӑйӗнчен ыйтар», — тесе калат тет. Ый-таҫҫӗ тет ҫӗртен: «Ку кам ани?» — тесе калаҫҫӗ тет. Ҫук ҫын ани ҫинче: «Пупӑн, пупӑн», — тесе калат тет. Леш пуп ани ҫинче: «Ҫукӑн, ҫукӑн», — тесе калат тет. Ҫапла пуп ҫук ҫын анине йышӑнат тет. Анчах унӑн ачисем ҫын пулаймаҫҫӗ тет: сӑвӑр тӑват тет вӗсене Турӑ. Вӗсем хиртех пурӑнмалла пулса юлаҫҫӗ тет ҫапла. Сӑвӑрсем шӑтӑкне кӗрсе кайнӑ чухне, темӗнле: «Пупӑн-пупӑн, ҫукӑн-ҫукӑн», — тенӗ пек каласа кӗрсе каяҫҫӗ вӗсем.

## 416

Ӗлӗк пӗр пуянӑн ҫӗрӗпе ҫук ҫын хресченӗн ҫӗрӗ пӗр ҫӗрелле пулать. Хресчен ани ҫинчи тырӑ питӗ вӑйлӑ пулнӑ. Пуян ҫӗрӗ ҫинче тырӑ начар пулнӑ. Тырӑ пиҫсе ҫитсен пуянӑн ҫак тырра хӑйӗн илесси килет, ӑна хӑй йышӑнать. Ҫук ҫыннӑн та хӑй анине парасси килмест. Вара иккӗш тав-лашсан-тавлашсан пуянӗ калать тет: «Атя ыран ирхине кӑвак ҫутӑпах ки-летпӗр те ҫӗр амӑшӗнчен ыйтатпӑр», — тет. Ку хресчен те килӗшет.

Вара каҫ пулсан пуян тӑватӑ ачине лартать, тимӗр кӗреҫе илет те лаши ҫине ларса хайхи ана ҫине каять. Вара хресчен анин тӑватӑ кӗтес-сине чавать шӑтӑк, кашни шӑтӑкне пӗрер ачине лартать. Ачисене вӗрен-тсе хӑварать: «Эпир ҫутӑличчен килетпӗр, ку ана камӑн тесен пуянӑн тесе калӑр», — тет. Вара ялне анса хресчене хӑй лаши ҫине лартать те ҫӗр амӑшӗнчен ыйтса пӗлме хире илсе каять. Ҫитеҫҫӗ те пуянпа хресчен пӗр кӗтессинчен, тепринчен — тӑват кӗтессинчен те ыйтаҫҫӗ: «Ку ҫӗр камӑн?» — тесе. Пурте: «Ку ҫӗр пуянӑн», — теҫҫӗ. Вара ҫук ҫын пуҫне чикет те йӗре-йӗре ялне анса каять. Вара пуян ирхине ачисене илме хире хӑпарать те, ачисем пӗри те ашшӗ патне тухмаҫҫӗ. Ланклата-ланк-лата хӑйсен шӑтӑкне тата шаларах кӗрсе карӗҫӗ тет.

Вара пуян ҫын ачисенчен, ҫук ҫын ӗмӗтне татнӑшӑн, сӑвӑр пулса каяҫҫӗ тет. Ҫавӑнпа вӗт сӑвӑр ҫын пыра пуҫласан икӗ аллипе питне хупла-са йӗре-йӗре хӑй шӑтӑкне кӗрсе каять.

## 417

Суха тума ҫынна Чӗрӗп вӗрентнӗ. Ӑна акӑ ҫапла калаҫҫӗ.

Турӑ патне пур чунлӑ япала пухӑннӑ. Чӗрӗп каярахран ҫитнӗ: «Эсӗ ма час килмерӗн?» — тенӗ. Чӗрӗп каланӑ: «Эпӗ ҫынна суха тума вӗрентрӗм,

эпĕ ăна кукăр йывăç тупма каларăм, тăрне тимĕр лартса çĕре сухалама хушрăм, унтан акма вăрлăх шыраса час килеймерĕм», — тенĕ.

Шурă хӳреллĕ Хурчăка кулнă: «Ак пирĕн Чĕрĕп мучи çитрĕ!» — тенĕ. Чĕрĕп вăтаннипе пăсарса янă. Ах, намăс пулнă. Вăл Хурчăкана каланă: «Хӳри тăрри хуралтăр, ĕмĕрех хура пултăр», — тенĕ.

Турă чĕрĕпрен ыйтнă: «Эсрел çухалчĕ, эсĕ, Чĕрĕп, курса-и?» — тенĕ. Чĕрĕп, ывăннипе аран-аран пăталтаттарса çитнĕскер, каланă: «Ман ăçта курас? Кăнтăрла çухалнă пулсан Хĕвел курĕччĕ; çĕрле çухалнă пулсан Уйăх курĕччĕ», — тенĕ. Çапла каласан Чĕрĕп Турă умĕнче вăтансах кайнă та каялла-каялла чакса кайнă. Турă каланă ăна: «Эсĕ, эппин, ĕмĕрех вăтанса, хутланса пурăн», — тенĕ. Çавăнпа вăл халĕ те çынна курсанах хутланса ларать.

## 418

Тĕнчене пултарнă хыççăн Турă мĕнпур тискер кайăка, чĕр чунсене хăй патне çĕр ĕçĕсене мĕнле йĕркелесе ярасси çинчен канашлама чĕннĕ. Пурте пуçтараннă, анчах чĕрĕп килсе çитеймен. Ăна шырама Кушак кайăка кăларса янă. Вара Чĕрĕп килсе çитнĕ. Алăк урати çине хăпарнă чухне Чĕрĕп теплерен асăрханаймасăр такăнса ӳкнĕ. Пурте унран кулма пуçланă.

Чĕрĕп çилленнĕ те каялла тухса кайнă. Чĕрĕп мĕн шутланине пĕлме тесе Турă Сыснана ун хыççăн йĕрлеме кăларса янă. Чĕрĕп мĕн калаçса пынине Сысна итленĕ-итленĕ те пухăва каялла таврăнса каласа панă.

— Мана мăшкăлласа кулаççĕ, хайсем нимĕн те пĕлмеççĕ. Ăна сухапуç, сӳре, урапа кирлĕ. Сухаласа, сӳресе акас пулать, пулса çитсен çурлапа вырас пулать, çапас пулать. Армана илсе кайса авăртас пулать, çăкрине пĕçерес пулать, вара тин пурнăç пулать, — тенĕ Чĕрĕп.

Чĕрĕп Шăшие çилленнĕ. Çавăнпа ăна çиме пуçланă. Сысна çакăншăн тата пухура Чĕрĕп хыççăн нумай çӳренĕ тесе ятланăран Чĕрĕпе хайне çиме пуçланă.

Сыснана Турă та ятланă. Сыснана Турă виçĕ çулта анчах хĕвел курма хушнă. Çавăнпа куçне уçса пăхмасть. Пĕлмесĕр, тиркемесĕр çиет, вилнĕ çынна та çиет.

## 419

Чĕрĕп çапла вĕрентнĕ: Ака тума ултă лаша кирлĕ, акапуçне йывăçран тумалла, шăртне, тĕренне тимĕртен, сӳре шăлне тимĕртен тумалла. Тыррине аксан сӳрелес пулать.

## 420

Малтан тырра кĕреçепе чавса лартса тунă тет. Тырă пуçахи вăрăм, кашни пĕрер шит пулнă тет. Анчах капла çех тăранса пурăнма хĕн пулнă тет. Этем нимскерле сухалама пĕлмен тет. Çапла хайхи аптăраса пурăннă тет. Чĕрĕп чĕлхе кăларнă тет. Чĕрĕп вĕрентнĕ тет чăвашсене ĕçлеме: «Эп пĕлеп те каламасп, — тесе калать тет. — Пĕр юплĕ йывăça икĕ тимĕр лартмалла та, — тесе калать тет, — ăна ик енне ик турта тумалла, — тесе калать тет. — Эп пĕлеп те каламасп, — тесе калать тет. — Лаша кӳлмелле те, — тесе калать тет, — вара турти тĕпĕнчен тытмалла та сухаласа

пымалла, — тесе калать тет. — Вăт çапла пулчĕ,— тесе калать тет. — Эп пĕлеп те каламасп», — тесе калать тет. Хăй ялан: «Эп пĕлеп те каламасп», — тесе калать тет, хăй пĕрмай калать тет. «Вара, — тесе калать тет, — эп пĕлеп те каламасп, — тесе калать тет, — унтан сӳремелле, — тесе калать тет. — Эп пĕлеп те каламасп, — тесе калать тет. — Вăт ăна епле тумалла, — тесе калать тет. — Ăна, — тесе калать тет, — пилĕк ĕрет йывăç тумалла, — тесе калать тет, — ик пусĕнчен тыттармалла, — тесе калать тет. — Эп пĕлеп те каламасп, — тесе калать тет. — Ăна çапмалла йывăç пăта, унтан лаша кӳлмелле те сӳремелле», — тесе калать тет. Аки пусне тума та çаплах чĕрĕп вĕрентнĕ тет. Вырăссенчен вĕренеймен тет атту чăвашсем.

## Выльăх-чĕрлĕх

### 421

Выльăх путекки çуралсанах хитре мар саспа çухăрнă тет. Унăн сасси Турă амăшне килĕшмен, вара ăна Турă амăшĕ тӳрех аслăк урлă ывăтнă та янă. Выльăх путекки вара тӳрех ура çине тăнă те малалла чупса кайнă. Çавăнтан вара выльăхсем çуралсанах утма пуçлаççĕ тет.

Этем ачин сасси вара Турра темĕншĕн питĕ килĕшнĕ. Вара Турă амăшĕ ăна çуралсанах йăтса сӳреме хушнă. Ачана вара çулталăк хушши йăтса çӳренĕ, çавăнпа ачасем çулталăксăр утма пуçламаççĕ тет.

### 422

Ĕлĕк пĕр хуçанăн икĕ тарçă пулнă. Пĕри выльăх чĕлхи пĕлнĕ. Выльăхсем калаççĕ: «Хуçа утмăл авăн турĕ, улăм ăшне утмăл пăт тата юлчĕ, унпа эпир хĕл каçиччен пурăнатпăр», — тесе. Тарçи çав сăмаха юлташне каланă, кайран çав сăмах хуçа хăлхине те кĕнĕ. Хуçа вара улăмне тепĕр хут антарнă та 60 пăт тырă тухнă. Вара хĕл каçиччен выльăхĕсем вилсе пĕтнĕ.

### 423

Иисус Христоса Иудея çыннисем хăваласа пынă. Вăл чупса пынă чух пур йывăç та пăрăннă, пĕр ăвăс анчах пăрăнман. Иисус: «Пăрăн», — тенĕ, вăл итлемен. Лаша патне чупса пырсан пытаннă та, лаша улăмне ун çинчен сирнĕ. Уншăн Иисус ăна: «Эсĕ нихăçан та выртса ан кан, мăйăнтан сӳсмен ан тухтăр», — тенĕ. Сысна сирмен те, ăна Иисус: «Ашу Калăм кунĕ çиме юратăр», — тенĕ.

### 424

Лаша этемĕн çывăх юлташĕ. Вăл питĕ сапăрлă выльăх. Çапсан çиллене те, анчах хирĕç тăма хăрать, таварса калама чĕлхи çук. Ытти чухне калаçмин те, Çĕнĕ çул каç пĕр-пĕринпе калаçаççĕ тет вĕсем. Мĕнпур шухăшсене çав Çĕнĕ çул каç пĕр-пĕрне каласа параççĕ тет. Лаша калаçнине илтнĕ çын питĕ сăваплă имĕш. Ваттисем каланипе, ун пек çынсем тӳрех рая каяççĕ.

## 425

Пĕрре Иисус Христос тăшмансенчен тарса пушă хире кайнă тет, анчах тăшманĕсем ăна хăваласа ун хыçĕнчен çав пушă хире те пычĕçĕ тет. Иисус Христос ниçта пытанма вырăн тупаймасăр, çав хирте лашасем курăк çинче çӳренине курнă та çав лашасем патне кайрĕ тет. Лашасене вăл тăшмансенчен пытанмашкăн шăтăк алтма ыйтрĕ тет. Лашисем Иисус Христос ыйтнине итлемерĕç тет. Вара Иисус Христос тарса ту çинче сыснасем çӳренĕ çĕре кайрĕ тет. Çав сыснасем Иисус Христоса хĕрхенсе, сăмсасемпе шăтăк алтса ăна çав шăтăка тăшманĕсенчен пытарчĕçĕ тет. Вара Иисус Христос сыснасене пиллесе каларĕ тет: «Эсир мана çапла хĕрхеннĕшĕн сирĕн ашăрсем ырă çынсем умĕнче чи чыслă апат пулĕ», — терĕ тет. Унтан лашасене ылханса каларĕ тет: «Эсир мана хĕрхенменшĕн хăвăр виличченех çĕр ĕçлесе пурăнăр, сирĕн ашăр çынна юрăхлă ан пултăр», — терĕ тет.

## 426

Турра иудăсем çакма шутларĕç тет. Турă кусенчен тарса лаша витине кĕрсе кункăра ăшне выртрĕ тет. Лаша апат çинĕ май Турă çинчи апатне сирсе Турă тухрĕ тет.

Лаша витинчен тухсан сысна витине кĕрсе выртрĕ тет. Сысна хăй çыврăракан вырăна улăм йăтса Турăна хупларĕ тет. Иудăсем килсе шырасассăн Турра тупаймарĕç тет.

Турă вара çапла каларĕ тет:

— Лаша ĕмĕр хăйĕн валли хырăм тăранмалăх апат хăй ĕçлесе туптăр, сысна яланах ĕçлемесĕр çитĕр, ăна хăйне тăрантарччăр.

Çавăнтан вара лаша яланах йывăр ĕçре, сысна ним ĕçлемесĕр апат çиет.

## 427

Пĕррехинче сысна чӳке апат çиме кайнă. Лере çитсен апат çиес тесе сăмсине вĕри çатма çине чикнĕ тет. Çакăнпа сыснан сăмси лаптак тет.

## 428

Сысна сăмси ĕлĕк питĕ вăрăм пулнă тет. Вăл ăна кирлĕ-кирлĕ мар çĕре пырса чикнĕ, ăçта килнĕ унта шăршласа çӳренĕ тет.

Пĕррехинче çакна Турă та çилленсе çитнĕ тет: сысни ăна йăлăхтарса çитернĕ пулнă. Вара Турă сыснан сăмсине кăштах татса кĕскетме шутлать. Вăл пĕр пысăк пуленке илет те çуррине çити çурса савăл чиксе лартать. Сысна шăршлакаласа пынă май шăпах хăйĕн сăмсине çавăнта чикет, вăрăм сăмси тĕкĕннипе савăлĕ тухса ӳкет, сысна сăмси хĕсĕнсе юлать, çурри таран татăлса ӳкет. Çавăнтан вара сысна пуклак сăмсаллă пулса юлать тет, унтан кĕске сăмсаллă сыснасем ĕрчесе кайнă тет.

## 429

Ĕлĕк сыснасен сăмси шĕвĕр пулнă тет. Пĕррехинче пĕр сыснапа тепĕр кӳршĕ сысни пӳртре халапласа ларнă тет. Вĕсем мĕн калаçнине сысна çурин пит пĕлес килнĕ тет. Вăл алăк хыçне пырса тăнă тет. Сасартăк алăк уçăлса каять те сыснана пырса çапать. Сыснан сăмси çавăнтах лапчăнса ларать. Çавăнтан вара сыснасем çаврака сăмсаллă пулса каяççĕ.

## 430

Иисус Христоса иудейсем хăваласа çӳренĕ. Иисус иудейсенчен пытанса юлас тесе лаша такани çине улăм айне кĕрсе выртать. Лаша çинĕ май улăма такана çинчен çĕре çавăрса тăкса пĕтерет те, Иисус такана çине çара выртса юлать. Иудейсем каллах тупнă çак Иисуса такана çинчен. Иисус, ача, каллах тарать — вĕлерттересшĕн мар хăйне. Пырсан-пырсан пĕр сысна тĕл пулать те пĕр лупашкана кĕрсе выртать, сысна тăпра айне варми-ха тесе. Сысна сăмсипе чава-чава чăнах та пытарчĕ Иисуса. Иудейсем иртсе кайнă тет, Иисуса тупайман тет. Иисус вара каланă тет лашана: «Эсĕ улăма сирсе иудейсене мана туптартăн, — тенĕ. — Сан какайна мана ĕненекен çын ан çитĕр», — тенĕ. Çампа халĕ лаша какайне çимеççĕ. Сыснана каланă: «Эсĕ мана çĕр айне туса хăтартăн, мана ĕненекенсем сан какайна çиччĕр», — тенĕ. Çампа халĕ сысна какайне çиеççĕ.

## 431

Христоса иудăсем йĕрлесе çӳреççĕ, вĕлерме шутлаççĕ. Лаша витине пытанать тет, Турăна лаша урипе кукалесе кăларать тет. Çавăнпа Турă ăна ĕмĕр йывăр ĕçлеме хушать. Сысна витине пытанать, сысна чавса кăларать, çавăнпа сыснана вутпа çунтарса çимелле тунă тет. Ĕне витине пытаннă тет, ĕни кавлесе анчах тăнă тет, çавăнпа та ăна çăмăл ĕç хушнă тет.

## 432

Малтан Турăпа Шуйттан пĕрлех пурăннă тет, килĕштерсе пурăннă тет. Турă мĕн тунă, Шуйттан та унăн хыççăн çапла тунă тет.

Пĕррехинче Турă йывăç улми тунă тет. Шуйттанĕ: «Манăн та тăвас», — тесе каланă тет, йăваланă-йăваланă тет, тем майлă та туса пăхнă тет, çапах те унăн çĕр улми анчах пулнă тет.

Тепрехинче Турă ĕне тума тытăнчĕ тет. Çакна курсан Шуйттан та тума тытăнчĕ тет. Пуçне те, майракине те, кӳлепине те Турăран пăхса турĕ тет, пăхать тет: унăн ĕне выранне качака пулнă тет, качаки «ме-ке-ке» тесе тăрать тет. Çавăнпа халăх качакана: «Шуйттан качаки!» — тесе вăрçать тет.

Турă хыççăн Шуйттан сурăх тума тытăнчĕ тет, анчах сурăх выранне сысна пулса тăнă тет. Çавăнпа та сыснана Шуйттан тунă тесе сысна ашĕпе ваттисене асăнмаççĕ тет.

## 433

Ĕлĕк Шуйттан качака тунă тет. Качакине хурса хăварать. Хăй Турă патне каять. Шуйттан Турра калать: «Атя кăтартап, эпĕ пĕр япала турăм», — тет. Турă пăхать те Шуйттан качака тунине курать. Вара Турă качакана сывлăш вĕрсе кӳртет. Качакана Шуйттан тунă, сывлăш Турă вĕрсе кӳртнĕ. Çавăнпа качака сĕтне çиеççĕ.

## 434

Турă тăмран ĕне тунă тет те ăна çĕр çине эteme ыр кӳме антарса янă тет. Çынсем Турă ĕне панăшăн питĕ хĕпĕртенĕ тет. Турра тем пек тав тунă тет. Вĕсем халĕ сĕт те суса илме пултарнă.

Çакна Шуйттан та курса ларнă пулнă. Унăн та çынсенчен ырă ят илтес килнĕ. Шуйттан çĕр çине аннă та тăм илсе улăхнă. Анчах унăн тăмĕ сахалрах пулнă. Вара вăл ĕнерен пĕчĕкрех кĕлетке тунă. Кăшт хўрине лартса янă та вăрăм сухал туса янă. Вара вăл ăна «качака» ят парса çĕр çине антарса янă. Халĕ те качака таçта тĕренсе çўресессĕн, пахчасенче çўресе тарăхтарсан ăна тарăхса «Шуйттан ĕни» теççĕ.

## 435

Чăвашсен тĕнчи вилĕ тата чĕрĕ тĕнчесем çине пайланать. Чĕрĕ чунсем хушшинче йытă паллăрах вырăнта тăрать. Йытă усал-тĕселе курма пĕлет, çавăнпа вăл яланах вĕрет. Тĕттĕм каçра та йытă курать. Хăш-пĕр чăвашсем йытă куçĕллĕ пулас теççĕ. Апла пулма куçа йытă куççулĕпе çумалла иккен.

## 436

Пĕр кошак шăши тытрĕ те, шăши кошака:

— Эс мана çияччен питне çуса-и-ха? — тесе калать тет.

Кошак йăпăр-япăр тĕпеле кĕрсе кайса питне çуса та тохрĕ тет. Пăхать тет — шăшийĕ çок та тет, тарса путаннă тет шăтăка. Çан хыççăн кошак апат çинĕ хыççăн тин пит çăвать тет.

## 437

Автанпа Павлин пурăннă тет. Вĕсем питĕ туслă пулнă тет. Автанĕн питĕ илемлĕ хўре пулнă. Вăл хĕвел çутинче тĕрлĕ тĕслĕн çуталнă тет.

Пĕррехинче Павлин хăнана кайма пуçтарăнать.

— Мана вăхăтлăха хăвăн хўрўна парса яр-ха, — тет Павлин.

Автанĕ ăна хăйĕн хўрине парса ярать тет. Çапла Павлин хăнана илемлĕ хўрепе каять тет. Анчах та каялла килмест тет. Автанĕ тарăхса кăшкăрса ячĕ тет: «Ку хыт кукар иккен!» — тесе.

Çавăнтанпа автан кашни ир куккареку! тесе кăшкăрать тет.

# Çĕлен-калта

## 438

Кашни кил-çуртра çĕлен пурăнать тет. Вăл кил-çурта сыхлать. Вăл ниçта та пăрахса каймасть тет. Çĕлен питĕ сăваплă тет. Вăл çынна тапăнмасть, сăхмасть. Питĕ ырă япала тет. Ытларах килте хурăн çĕленĕ пурăнать. Вут-кăвар кил-çуртра тухсан çĕлен кунтан тарать тет те урăх пĕрре те таврăнмасть тет.

## 439

Чăвашсем çĕленрен питĕ хăраççĕ, çапах та хăшĕсем калаççĕ: «Çĕлене вĕлерме çылăх», — теççĕ. Ĕлĕк пĕр çĕртен çĕр шăтнă тет те, çав шăтăкран çĕр çинелле шыв питĕ хытă туха пуçланă тет. Çавна курсан çĕлен хăвăртрах

пырса хăй хӳрине çав шăтăка чикнĕ тет те, шыв чарăннă тет. Çапла çĕлен тĕнчене шыв тулса пĕтесрен хăтарнă тет.

Ачасем çырăва вĕрене пуçланăранпа малтанхи çынсем çылăха кĕнĕ чухне çĕлен ăшне шуйттан кĕнине пĕлеççĕ те çĕлене юратмасăр курсанах вĕлерме тăрăшаççĕ.

## 440

Кил-çурт таврашĕнче çĕлен пурăнать тет. Вăл кил-çурта сыхлать, хуçисем хăнана кайсан çак çĕлен вĕсен ачисене, выльăх-чĕрлĕхсене упрать, сыхласа пурăнать. Çак çĕлен кил таврашĕнче хуçисем çак çурта пăрахса кайичченех пурăнать тет. Пушар пулса çурт çунса кайсан çĕлен çак кил таврашĕнчен яланлăхах сивĕнет, унтан урăх çĕре куçать. Çак çĕлене çынсем ырă туса сăнанă. Хăшĕсем тата çак çĕлене курнă пек те калаçаççĕ. Эпĕ те илтнĕччĕ ун пек каланине.

Хуçисем çурта пăрахса урăх çĕре куççан та çĕлен çак çуртрах юлать тет. Çапла калакансем те пур.

## 441

...Хайхи хурăн пуçлă çĕлене те карта хĕртсурчĕ тесе пурăнаççĕ Етĕрне тăрăхĕнчи чăвашсем. Картара хурăн пуçлă çĕлен пурăнмасан выльăх-чĕрлĕх ăнмасть теççĕ.

## 442

Кашни çуртра, хĕртсуртсăр пуçне, тата килти ытти ырăсем те — шапапа çĕлен — пурăнаççĕ. Пĕри — тĕпсакайĕнче, тепри — картишĕн кайри пайĕнче. Ку хăватсем кил-çуртшăн усăллă шутланаççĕ, вĕсемсĕр çурт та тытăнса тăраймасть-мĕн. Çĕнĕ çурта куçнă чухне вĕсем те куçса пыма тăрăшаççĕ, çĕнĕ çĕрте вĕсене пăтăпа, икерчĕсемпе кĕтсе илеççĕ.

## 443

Пĕррехинче пĕр 5—6 çул каялла пирĕн ялта Ястребов Самуилсем ĕнин сĕчĕ чакса ларнине сиснĕ. Вара вĕсем сăнама пуçланă. Пĕр каçхине вĕсем çĕлен ĕне уринчен явкаланнине курнă. Вара вĕсем çав çĕлене тытнă та вĕлернĕ. Эпир пĕчĕк ачасем пурте пухăннăччĕ курма, анчах пире çĕленне кăтартмарĕç те.

Халăх хушшинче пӳрте-çурта упракан çĕлене вĕлерме юрамасть теççĕ. Чăнах та çак çемье хăйсен вырăнĕнче нумай пурăнаймарĕ, урăх çĕре куçса ларчĕ. Çĕнĕ вырăнта та вĕсем лайăх пурăнма пултараймарĕç. Пӳрчĕ çунса кайрĕ, икĕ ачи çунса вилчĕç.

## 444

Кил çĕленĕ кашни килтех пур. Вăл кил-çурта инкекрен сыхлать тет. Вăл пӳрт никĕсĕ айĕнче пурăнать, вăл питĕ пĕчĕккĕ тет. Кил çĕленĕ куç тĕлне пулсан ку ырра мар теççĕ. Кил çĕленне вĕлерме юрамасть, ку инкек кăтартать.

## 445

Пӗрре ҫапла вӑрмантан килнӗ чух, яла ҫитсен, пӗр пысӑк ҫӗлен явкаланса выртать тет. Ҫӗлене касса вӗлерсе хӑвартӑмӑр тет. Вара нумай та тӑмарӗ тет, икӗ кил тӗпӗ-йӗрӗпе ҫунса кайрӗ тет. Ку кил ҫӗленӗ пулнӑ. Вӑл кил ҫунасса пӗлсе тарнӑ тет. Хуҫисем яланах: «Ма вӗлертӗмӗр-ши ку ҫӗлене?» — тесе кулянаҫҫӗ тет.

## 446

Ӗлӗк-авал ҫӗленсен Турри пулнӑ тет. Вӑл питӗрех те пӗчӗк ачасене юратнӑ тет.

Ӗлӗкхи вӑхӑтра ҫынсем ачасене урапа ҫинчех хӑварнӑ та ҫимелли те ҫавӑнтах панӑ. Кулленех ачасен апачӗсене ҫӗлен ҫисе янӑ. Апат парса хӑварман чухне ҫӗлен килмен.

Пӗррехинче пӗр ачана сӗт парса хӑвараҫҫӗ те хӑйсем сыхласа тӑраҫҫӗ. Ача пӗр чарӑнмасӑр кулать. Амӑшӗсем кайса пӑхаҫҫӗ. Ҫӗлен ача чашкинчен сӗт ӗҫет. Ҫӗлен пуҫне чиксенех ача кашӑккипе шак! тутарать ҫӗлене, лешӗ вара пуҫне ҫӗклет. Ҫавӑнтан ача савӑнсах кулнӑ.

Амӑшӗсем ҫӗлене хуралласа тӑрса вӗлернӗ. Ача кулленех салхуланса пырать. Кайран вара чирлесе вилет.

Ҫӗлене вӗлернӗшӗн вӗсен Турри ҫилленнӗ. Ҫавӑнтан вара ҫынсем кил хушшинче ҫӗлен пурӑнсан та вӗлерме пӑрахнӑ.

## 447

...Ӑраскаллӑ ҫын ҫӗлене курать. Мӑйракаллӑ ҫӗлене курсассӑн шур тутӑр пӑрахать, (шурӑ япала) сарса хурать ҫӗлен умне. Ҫав шурӑ ҫине ҫӗлен мӑйракине пӑрахать. Унтан вара ӑна ҫын илсе таврӑнать те пуять: укҫа енчӗкне ярсан укҫа нумай пулать; выльӑх картине хӗстерсе хурсан выльӑх нумай пулать; вӑрлӑх тырӑ ҫине чиксе хурсан тырӑ ӑнать те хуҫа пуять. Ҫӗлен мӑйракине ҫухатсассӑн ҫука ерет: пит хытӑ сыхлас пулать.

Ҫулла ҫӗленсем пӗр ҫӗре пуҫтарӑнса туй тӑваҫҫӗ тет. Ҫав ҫӗленсен ушкӑнӗнче пӗри шурӑскер, тап-таса ҫӗленӗ пулать тет. Ҫӗленсен ушкӑнӗ патне ҫывӑхрах пырса шурӑ тутӑр ҫине пуҫламан ҫӑкӑр хурса хӑварсассӑн ҫав шурӑ ҫӗлен мӑйракисене ҫӑкӑр ҫине хывса хӑварать тет. Ҫав мӑйракасене илес пулать тет те шур тутӑрпа чӗркесе усрас пулать тет, вара ҫавна тӑвакан ҫын питӗ телейлӗ пулать тет.

## 448

Темскерле ылттӑн мӑйракаллӑ ҫӗлен пур тет. Мӑйракисене вӑл кашни ҫулах пӑрахать тет. Ҫав ҫӗлен мӑйракисене тупакан ҫын пуять тет. Тулӗк ҫамкине икӗ мӑйрака пек мӑккӑль сиксе тухать тет. Хирпуҫӗнчи Кулля ҫавӑн пек мӑйрака тупса пуйнӑ тет, ҫамкинчи мӑккӑлӗ те унӑн ҫавӑнпа тухнӑ тет. Вӑл халь кам та пулсан ҫамкине перӗнтерсе мӑккӑль сиктерсе кӑларсан: «Ку Кулля мӑйракине ӑҫтан тупрӑн?» — тесе ыйтаҫҫӗ кулса.

## 449

Микиххи старик çĕлен чĕлхи пĕлнĕ, çĕленсемпе хутшăннă. Микиххи вĕсем патне час пымасан çĕленсем ăна чĕнсе аптăратнă.

Пĕррехинче çапла çĕленсем Микиххи патне пухăнса пычĕç тет. Çĕрле тет-ха ку. Вара Микиххи çĕленсене ĕççĕр тăриччен хăйсен пӳрчĕ умĕнчи хăйăртан вĕрен явма хушрĕ тет. Çĕленсем аппаланчĕç-аппаланчĕç тет, нимĕн те тăваймарĕç тет, тулĕ те çутăлса килчĕ тет. Вара çĕленсем тарăхса пăрахса кайрĕç тет.

## 450

Çĕлен çынна пĕрре сăхсан çичĕ çул çитиччен тепре сăхать теççĕ, çав çыннах, çав çĕленех; çичĕ çул иртиччен сăхайман пулсан вара сăхмасть теççĕ.

## 451

Кĕркунне пулсан çĕленсем çĕрĕк каска, тунката айне хĕл каçма пытанаççĕ. Е тепĕр чух шăтăка пытанаççĕ. Анчах çынна е ытти выльăх-чĕрлĕхе сăхнă çĕленсем кĕрсе выртмаççĕ тет, чăваш каланă тăрăх. Вĕсене сивĕре те ытти çĕленсем, сăхманнисем, хăйсем патне йышăнмаççĕ тет. Вĕсем айăпа кĕнĕ пулать. Тур саккунĕ пек каласан, çылăхлă пулать.

## 452

Пĕлĕт çинче çичĕ пуçлă, вунă мăйракаллă çĕлен пур тет. Виç тӳперен пĕр тӳпине, çăлтăрсене çичĕ пуçĕпе тытса тăрать тет. Çав хĕрлĕ çĕлен çĕр çине аннă. Тинĕсрен тохать тепĕр пысăк çĕлен çичĕ пуçлăскер. Унăн пĕр пуçĕ аманнă тет. Икĕ çĕлен пĕрне-пĕри пуç çапаççĕ тет. Аманнин пусне пĕлĕт çинчи çĕлен юсаса ярать тет. Вара çĕленпе çĕлен халăха хăйсене пуççаптарма тытăнаççĕ. Пуççапманнисене вĕлернĕ.

## 453

Ваттисем каланă тăрăх, калтана: «Калта калт, хӳрĕне пăрах», — тесен вăл хӳрине пăрахса хăварать тет. Кайран вара унăн ку хӳринчен кĕскерех те пулин çĕнĕ хӳре ӳссе çитĕнет тет. Калта вара ку çынна хытă ылханать тет. Вара вăл çыннăн юратнă çынни (ачасен — ашшĕ-амăшĕ, мăн çынсен — ачи, мăшăрĕ е урăх пĕр-пĕр çывăх çынни) вилет тет. Çавăнпа та ваттисем: «Калта калт, хӳрĕне пăрах», — теме хушмаççĕ.

## 454

Кунти ватă çынсем каланă тăрăх, çын çĕлен-калтана кӳрентерсен е сиен тусан вĕсем хытă ылханаççĕ тет. Вара вăл çынна мĕнле те пулин пысăк инкек пулать тет. Çылăха кĕнĕ çĕлен-калта (çынна сăхса е тата урăх мĕнле те пулин майпа) хăех урапа картлашкине выртса вилет тет.

## Хурт-кăпшанкă

### 455

Пăрçасене, шăнасене Турă этеме çыврăнă çĕртен тăратма тунă тет. Пăрçасем, шăнасем пулмасан çын çуллахи шăрăх çанталăкра хăйне хăй пĕлмесĕр çыврĕччĕ тет. Пăвансене, сăпсасене, ÿпресене усал пултарнă тет. Турăран Усал: «Мана туяпа туяланмалăх çех çĕр пар-ха. Кăшт та пулин хамăн çĕр пултăр», — тесе ыйтнă тет. Турă: «Туялан эппин», — тенĕ тет. Усал туяланнă тет те туйи аннă таранах антарнă тет. Туйине унтан туртса кăларнă тет те, çав туя вырăнĕнчен шăна-пăван сĕрлесе тухнă тет. «А, мана улталарăн-ĕç эс», — тесе каланă тет Турă. «Эккей, сана çех асăнмалла. Мана та асăнчăр. Лашисем шăрăхпа çапкаланĕç те: «Ах, шуйттан, — тесе калĕç. — Мана та асăнĕç», — тенĕ тет усал.

### 456

Ĕлĕк-авал çĕр çинче вут пулман тет. Анчах та çĕр çинче пурăнакансем таçта инçетре-инçетре, пĕр тĕпсĕр шăтăкра, вут çуталса выртнине курнă тет. Патша указ кăларать тет: «Кам та кам çав çунакан вутта çĕр çине илсе хăпарать, çавна ĕмĕр килрен киле çÿресе савăнмалла тăватăп», — тенĕ тет. Шутласан-шутласан вут илме эрешмен анма шутлать тет. Аннă чух хăйĕн паутинкипе тĕрлĕ эреш туса анать тет хăпарма лайăх пултăр тесе. Чылай вăхăт иртсен эрешмен вут патне çитсе каялла хăпарма пуçлать тет. Хăпарнă чух хăй хыççăн паутинкине вут пуççи çунтарса пĕтерсех пырать тет. Акă эрешмен çĕр çине тухсан ывăннипе тÿрех çыврса каять тет.

Ирхине ирех чи малтан шăна тăрать те урам тăрăх нăйлатса çÿреме пуçлать тет. Акă вăл эрешмен çумĕнче вут пуççи çунса выртнине курать тет те тÿрех вут пуççине йăтса патша патне каять тет.

Эрешмен вăрансан хăй çумĕнче вут пуççи çуккине курса тÿрех шăна патне каять тет те шăна мухтанса тăнине курах каять тет. Эрешмен хăй мĕнле картасем карса анса хăпарни çинчен каласа парать. Пурне те шăтăк патне илсе каять тет те, анчах темле тилмĕрсе пăхсан та пĕр карта йĕрĕ те курмаççĕ тет. Вара эрешмене суеçĕ тесе яланах тĕттĕм кĕтессенче çÿремелле тунă. Шăнана ĕмĕр-ĕмĕр килрен киле çÿресе савăнмалла тунă тет. Çавăнпа халĕ те эрешмен шăнана курсан яланах ĕлĕкхишĕн тавăрма тăрăшать тет.

### 457

Чăвашсем çăкăр-тăвара Турă панă чи пысăк ырлăх вырăнне хурса хисеплеççĕ. Çавăнпа çăкăра питĕ тирпейлĕ тытаççĕ. Çăкăр тĕпренчĕкне е тăвар чĕптĕмне урайне ÿкернине пысăк çылăх теççĕ, мĕншĕн тесен тирпейсĕрлĕх Турра кÿрентерет, унăн вайне чакарать.

Тĕпренчĕк ÿкнĕ чухне чăваш эрешменрен хăрать, мĕншĕн тесен эрешмен йăлтах сăнаса ларать, курсанах Турра кайса каласа парать теççĕ. Çав юрăхсăр эрешмен çынсем апат çинĕ чухне маччаран сĕтел çине е урайне анать те ăçтан та пулин çăкăр тĕпренчĕкĕ тупма е вăрлама хăтланать, пĕр тĕпренчĕк тупсанах ăна Турă патне сĕтĕрсе каять, вара ăна пит мух-

танса ҫынсем Турӑ ырлӑхне упрамаҫҫӗ тесе имӗш элек парса тултарать. Ҫапла элексем хыҫҫӑн Турӑ ҫынсем ҫине инкек е типшар ярать. Ҫынсем эрешмене элекҫӗ пулнӑшӑн юратмаҫҫӗ.

## 458

Хӑмӑтлапа* кӗве — вӗсем арӑмӗпе упӑшки. Ӗлӗк-авал пуш уйра Варлам ятлӑ ял пулнӑ. Ҫак ялта пӗр карчӑкпа пӗр ӑстарик пурӑннӑ. Вӗсем хӑнана хветӗ** пулнӑ. Пӗрре ҫаксем патне пуҫтаракан кӗнӗ; вӗсем ку пуҫтаракана пӗр така пӗҫерсе ҫитерсе янӑ. Тепӗр кунне каллех пуҫтаракан пычӗ тет. Каллех тепӗр така пӗҫерсе ҫитерчӗҫ тет. Ҫавнашкал ҫирӗм хутчен ҫаксем ҫитерсе ячӗҫ тет. Карчӑк ӑстариккине калать: «Вӑл пуҫтараканa епле ҫаплах ҫитараппӑр. Вӑл килме пӑрахас ҫук, атя ӑна кушак пӗҫерсе ҫитарас, вӑл вилтӗр луччӗ», — тет. Ӑстарикки те калать: «Юрӗ», — тет. Ӑстарикки кушака тытрӗ те пусса тирпейлерӗ. Карчӑкки хуранне ҫуса ҫакса ячӗ, кушак ашне пӗҫерeҫҫӗ. Хайхи пуҫтаракан ҫитрӗ. Пиҫсе ҫитерехпе карчӑкпа ӑстарик кула пуҫларӗҫ. Апачӗ пиҫсен карчӑкӗ сӗтел ҫине лартса пачӗ те пуҫтаракана: «Айта-ха, ҫиме лар-ха!» — терӗ. Пуҫтаракан тӑчӗ те сӗтел патне утса пырса сӑхсӑхма пуҫларӗ, анчах пӗрре-иккӗ хӗрес хучӗ, кушак хурантан тухрӗ те вӗлт курӑнчӗ. Кӑна ӑстарикпе карчӑк курса тӗлӗнчӗҫ. Ӑстарикки мӑк ӑшне кӗрсе ларчӗ, карчӑкки ҫӑм ӑшне кӗрсе ларчӗ. Пуҫтаракан каларӗ: «Эсир ӗмӗр-ӗмӗрех ҫанта пурӑнӑр», — терӗ. Халь те пулин хӑмӑтла мӑк ӑшӗнче пурӑнать, кӗви ҫӑм ӑшӗнче. Юмах юманлӑхра, эпӗ ҫӑкалӑхра.

## 459

Кӗвепе Хӑнкӑла малтан ҫынсем пулнӑ тет, тутар ҫыннисем тет. Вӗсем иккӗшӗ те пуян хыт кукар пулнӑ.

Пӗррехинче ҫакскерсем хӑйсем патне хӑйсен туррине Пихампара хӑнана чӗнеҫҫӗ. Пихампар умӗнче Кӗвепе Хӑнкӑла мухтанасшӑн пулнӑ, анчах Пихампар пынӑ ҫӗре нимӗн те хатӗрлемеҫҫӗ, пурӗ те пӗр кушак ҫеҫ пусаҫҫӗ. Аслӑ Пихампар хӑнана килет, вӑл ҫакӑнта нимӗн пулман пек тыткалать, калаҫать, шӳт тӑвать. Анчах Кӗвепе Хӑнкӑла хӑнана килнӗ Пихампар юри ҫапла тунине ӑнланса илеҫҫӗ, ниҫта кайса кӗме ҫук намӑсланаҫҫӗ. Вара вӗсем намӑсран вӑтаннипе ӑҫта куҫ курнӑ ҫавӑнта хӑвӑртрах тарса пытанаҫҫӗ: Хӑнкӑли — пӗрене ҫурӑкне, Кӗви — милӗк ҫулҫисем хушшине. Ун хыҫҫӑн вӗсем унтан ниҫта та тухайман, ӗмӗрлӗхе хӑнкӑлапа кӗве пулса юлаҫҫӗ.

## 460

Пӗр ҫӑткӑн ҫӗлен пулнӑ. Вӑл тӑхӑр пуҫлӑ пулнӑ.

Пӗррехинче вӑрӑм туна ун патне пынӑ. Лешӗ вара ӑна:

— Кай та кашни чӗр чун юнне ӗҫсе тух, камӑн тутлӑ, ҫавӑн ҫинчен мана килсе пӗлтер, вара эпӗ ҫавӑн юнне ӗҫсе пурӑнӑп», — тесе каланӑ.

---

* Хӑнкӑла.
** Хавас.

Вăрăм туна çĕлен хушнипе чĕр чунсен юнне ĕçме вĕçсе тухса каять. Малтанах упа юнне ĕçсе пăхать, унтан ыттисенне, юлашкинчен этем юнне ĕçет. Этем юнĕ ăна пур чĕр чун юнĕнчен те тутлăрах пулать. Вара вăл часрах çĕлене пĕлтерме шутлать. Этем юнне ĕçнĕрен вăрăм туна та этем чĕлхипех калаçма тытăнать. Вара çав вăрăм тунана этемсем вĕлерме шутлаççĕ, анчах вĕлермеççĕ, чĕлхине çеç касса илеççĕ. Çапла вăрăм туна ĕмĕрлĕхех чĕлхесĕр пулса юлнă тет, камăн юнĕ тутлă пулни çинчен çĕлене те пĕлтереймен тет.

## 461

Пĕрреччен Çилпе Турă ачи хăшĕ вăйлăрах тесе тавлашнă тет. Турă ачи йывăç çинче пураннă. Çил питĕ хытă вĕрме пуçланă та Турă ачине йывăç çинчен çĕмĕрсе ӳкернĕ. Вара Турă ачи вилсе кайнă. Çил Турăран хăраса пытанса ларнă. Пĕр-икĕ эрне иртсен Çил çуккипе тĕнче хуртланма пуçланă. Турă ачи вилли те хуртланнă. Турă çакна курса Çил шырама пуçланă. «Çил, тух, эпĕ сана нимĕн те тумăп», тенĕ вăл. Çилĕ хайхи тухса каланă: «Турă, эпĕ санăн умра айăплă, санăн ачупа хăшĕ вăйлăрах тесе тавлашрăмăр та, эпĕ ăна çĕмĕрсе ӳкерсе вĕлертĕм». Турă: «Ăçта унăн вилли, кăтарт», — тесе ыйтнă. Вара Çил ăна вилĕ патне илсе кайнă. Турă ачийĕн вилли хуртланса кайнине курнă та: «Хурчĕсенчен те пулин этеме усăллă япала пултăр», — тенĕ. Вара çав хурчĕсенчен пыл хурчĕсем пулса вĕçсе тухса кайнă. Турă çавăнпа халь пыл хурчĕ вĕллине нихçан та аçа (аслати) çаптармасть тет.

## 462

Ĕлĕк Турă пĕччен пурăнса питĕ пыйтланса кайнă. Вара чăтаймасăр пыйтине шăлса тăкнă. Пыйтисем вăрмана ӳкнĕ те йывăç хăвăлне кĕрсе пурăнма пуçланă. Турă пыйтисене: «Этеме юрăхлă пулăр», — тенĕ. Вара вĕсем хурт пулса тăнă. Турă пилленĕ тăрăх, çав хурт халĕ те этеме пыл туса парать.

## 463

Чикме уесĕнче Аслă Пушкăрт ялĕнче Кĕпе ту ятлă сăрт пур теççĕ. Сăрчĕ çӳллĕ теççĕ. Кĕпе ту çинче пăхăр юхать тет чулсем хушшипе, унта пыл хурчĕсем пит нумай вĕçсе çӳреççĕ тет. Çав сăрт çинчи пек урăх ниçта та пыл хурчĕ нумай вĕçсе-сĕрлесе çӳремест тет, пыл та унти пек нумай пулмасть тет. Çав сăрт ятне пыл хурчĕ тытакан çынсем яланах асăнаççĕ: «Турă, мана çав Кĕпе ту сăрчĕ çинчи пекех пыл хуртне ĕрчетме пулăш!» — теççĕ вĕсем.

## 464

Вĕллери хуртсем вĕсем таса Иофран пулнă теççĕ. Турă Иоф çине хĕн ярсан юхан-сурансем выртнă чухне хуртланса кайнă тет. Иоф Турă çине питĕ шаннăшăн ун ӳчĕ çинче пулнă хуртсене вĕçсе çӳресе пыл пуçтарма хушнă тет.

## 465

Турă Иофа юрлă хăварсан юхан-суран пуснă. Иофăн ӳтне хуртсем ҫие пуҫланă. Пĕтĕм ӳтне-тирне ҫисе пĕтерсен хурт Иофăн чĕлхипе чĕрине ҫиме пуҫлать. Иоф калать: «Эй, Турă, эсĕ мана ӳте-тире хурта ҫитерсе пĕтертĕн; манăн чĕлхепе чĕрене ҫитерсен эпĕ вилетĕп, вара сана кам кĕлтăвĕ», — тет. Ҫапла каласан Иоф ҫăварĕнчен икĕ хурт тухса каять. Пĕр хурчĕ юман хăвăлне кĕрет, тепри кӳлле ӳкет. Пĕри марта хурчĕ* пулса тăнă, тепри сĕлкĕ пулса тăнă.

Ҫыннăн усал юнне ĕҫме сĕлкĕ ларттараççĕ.

# Пулă-сулă

## 466

Шыв турри пĕтĕм ҫĕр ҫинче пĕччен хуҫа пулнăшăн питĕ те савăннă тет. Савăнăҫĕ нумая пыман тет. Шыв турри каннă чух ăна Шуйттанпа Эсрел пырса вĕлерме тăнă тет.

Шыв турри вилĕмрен хăтăлсан хăйне сыхлакан пултăр тесе ҫăрттан пулă туса янă тет. Ҫиме ҫуккипе ҫăткăн ҫăрттан Шыв туррине хăйне тапăннă тет.

Шыв турри вара ҫăрттанăн ҫимелли пултăр тесе шыв тĕпĕнчен чулсене ывăҫласа илсе сапса янă тет. Ҫав сапнă чулсенчен шывра тĕрлĕ чĕр чунсем пулса кайнă тет.

Ҫăрттан ҫав чĕр чунсемпе тăранса пурăнать теççĕ. Ҫавăнпа ҫăрттан питĕ ҫăткăн та выҫлăх пулă.

## 467

Шуйттан пĕррехинче иккĕ шыва кĕрсе тухрĕ тет. Шыв таса, нимĕн те ҫук тет. «Кун пек интерес ҫук, шывра та, ҫĕр ҫинчи пек, чĕр чунсем пулччăр», — тесе ĕҫе ларчĕ тет. Ак халь шыв тĕпĕнчен кăвак тăм илчĕ тет те йăвалать тет. Йăваларĕ-йăваларĕ тет те пĕр чăмăркка туса: «Ку Шыври пултăр», — тесе ячĕ тет.

Пурăнаççĕ тет Шуйттанпа Шыври питĕ килĕштерсе. Шуйттан ҫĕр ҫине кайса килет тет те шыва канма анать тет. Шыврин пĕр ĕҫ те ҫук тет. Тарăхрĕ тет хайхи. Шуйттан ҫывăрса кайсан Шыври Шуйттана вĕлерме тăчĕ тет. Шуйттанĕ сисрĕ тет.

— Э-э-э, эсĕ капла-и? Мана вĕлерсе хуҫа пуласшăн! — тет Шуйттан. Ҫав самантрах шыв тĕпĕнчен чулсене ывăҫла-ывăҫла илчĕ тет те:

— Шур юнлă чĕр чунсем пулччăр, шурă юнлисем, — тесе сапать тет.

Ҫакăнтан вара, чăнах та, шыв тĕпĕнче тем тĕрлĕ чĕр чун та пулса кайнă тет. Чи авалхи ҫынсем пулла «Шуйттан кайăкĕ» тесе ҫимен тет.

## 468

Пĕр кушак ҫурин хырăмĕ пит выҫнă тет. Шыв хĕрне аннă та пулăсене шыраса ларать тет. Акă шыв ăшĕнче пулăсем выляççĕ тет. Кушак ҫури

---

* Вĕлле хурчĕ, пыл хурчĕ.

чăтаймарĕ тет, шыв ăшне пулă тытма тӳрех сикрĕ тет. Анчах ку кушак çури ишме пĕлмен пулнă. Ăна шапасем туртса кăлараççĕ те хăйсем çине лартаççĕ. Кушак çурин киле каяс килсе каять тет. Шапасене вăл: «Эсир пурте çурăмсене кунталла çавăрса çыран хĕрне кайса ларăр. Эпĕ кам сирĕнтен кăвак çурăмлă, çав мана çăлчĕ тесе аннене калатăп вара», — тесе каларĕ тет.

Шапасем вара пурте çыран хĕрнелле çаврăнса ларчĕç тет.

Пурте: «Эп кăвак, эп кăвак, кăвак!» — тесе калаççĕ тет. Кушак çурийĕ вара шапасен çурăмĕ тăрăх пусса çыран хĕрне тухать тет.

Çавăнтан шапасем: «Квак, квак, квак», — теççĕ тет.

**469**

Шапа ахăрать çăмăр пулас умĕн. Шапасем тăмран лаша тăваççĕ тет, утланса лараççĕ тет те вара ахăрса яраççĕ тет.

# IV. ЭТЕМ. ХАЛӐХ. ПАТТӐРСЕМ

*Ҫут тĕнче варри — халӑхсем. Ҫынсемпе халӑхсем пулса кайни, чĕлхесемпе тĕнсем йĕркеленни, Ҫĕр ҫинчи вырӑнпа вӑхӑтсен ҫыхӑнӑвĕ, несĕл пуҫĕсемпе паттӑрсем ҫинчен хывнӑ халапсем тĕнче хайлалӑхĕнче нумай. Чӑваш хайлихалапĕ те ку енĕпе пуян. Паллах, чӑваш паттӑрĕсем ҫинчен каланисем Авалхи Грецири пекех вӑрӑм та хиврe мар, мĕншĕн тесен вĕсене ҫырса илнĕ вӑхӑта мифсемпе легендӑсем историлле халапсемпе асамлӑ юмахсене куҫса кайма ĕлкĕрнĕ. Апла пулсан та Улӑп, Шу, Чура, Тукмар, Сӑкӑт тата ытти паттӑрсен сӑнарĕсенче хайлалла аваллӑх курӑнать. Этем кайӑк пулни е хĕр уйӑх ҫине кайни хайлалла шухӑшлав чухне кӑна ҫуралма пултарнӑ.*

*Ҫынпа халӑха пултарнине кӑтартакан халапсенче чӑвашсен авалхи сартӑшĕн тата кайранхи тĕнсен (православи, ислам) витĕмĕсем уҫҫӑнах курӑнса пыраҫҫĕ.*

*Кустӑрма, сухапуҫ, пӳрт-ҫуртра е хуҫалӑхра кирлĕ хатĕр-хĕтĕрсене тунипе пĕрлех этем купӑс, шӑхлич, кĕнеке ӑсталанӑ. Ҫырулӑх никĕсленсен тĕн кĕнекисем ҫырӑннӑ. Авалхи чӑваш несĕлĕсен «Турӑ кĕнекипе» «Шӑпа кĕнеки» тӑшман вут-кӑварĕнче («хĕрлĕ ĕне хырӑмĕнче») ҫунса кайни ҫинчен халапсем те, ӑслӑлӑх тĕпчевĕсем те калаҫҫĕ.*

*Ҫĕр ҫинчи ырӑ-хаярпа усал-тĕсел ҫинчен калакан халапсем те Ҫут тĕнче тытӑмнех кĕреҫҫĕ, этем хутлӑхнех никĕслесе тӑраҫҫĕ. Вĕсене кĕнекене уйрӑм пайсене уйӑрса кĕртнĕ.*

## Ҫынна пултарни

### 470

Ҫын ҫĕртен пулнӑ тет. Тӑпраран пулнӑ ҫын тӑпра ӑшне кĕмелле теҫҫĕ.

### 471

Ҫынсене тӳпери Турӑ туса янӑ. Тӑвасса ҫĕртен тунӑ пулнӑ. Тĕсĕ этемле пулнӑ пулсан та хӑйсем илемсĕр курӑннӑ. Ҫавӑнпа Турӑ ҫав хитремарлӑха пĕтерме этеме чун панӑ.

Ҫынсене пултарнӑ чухне пурте пĕр чĕлхепе калаҫнӑ.

### 472

Ĕлĕк ҫĕр ҫинче чи малтан пĕр ҫын та пулман тет. Турӑ пĕр-пĕччен пурӑннӑ тет. Пурӑннӑ-пурӑннӑ тет те Турра пĕччен пурӑнма кичем пулса кайнӑ тет. Вара вӑл тӑмран ҫын кĕлетки тунӑ тет те ӑна чун кĕртнĕ тет. Ку

хĕрарăм пулнă тет. Кун хыççăн Турă хĕрарăмăн пĕр аяк пĕрчине кăларса илнĕ тет те арçын тунă тет. Çавăнпа вара хĕрарăмăн пĕр аяк пĕрчи арçынсенчен сахалтарах тет.

### 473

Тахçан авал çĕр çинче этемсем пулман, вĕсем вырăнне пысăк та вăйлă улăпсем пурăннă. Пĕррехинче пĕр Улăпĕ вăйне ниçта хураймасăр таврара ӳсекен пĕтĕм ӳсен-тăрансене, йывăç-курăка тăпăлтарса пăрахнă. Кăна Улăпăн амăшĕ пĕлсен вăл ывăлне: «Çак ĕçе тума сана усал вăй хушнă, — тенĕ. — Санпа усал хуçаланать», — тенĕ. Вара амăшĕ ывăлне аллисене татма хушнă. Улăп пӳрнисене татнă та çĕр айне пытарнă.

Вăхăт иртнĕ, пӳрнесенчен пĕчĕк чĕр чунсем шăтса тухнă. Вĕсене улăпсем тивмен, каярахпа вĕсене Этем тесе чĕнме тытăннă.

«Çавăн пек пулса кайнă этем», — тесе каланисем тĕл пулаççĕ пирĕн ялта.

### 474

Ĕлĕк-ĕлĕкех пĕр Торă полнă. Вăл этем тума шутланă. Пĕр шăнă* тупнă та уя йăмра тункати çине кайса хунă. Пĕрре пырать те — шăнă çок. Çавăнтах пĕр шăнă йăтнă йытта курах каять, карян кашкăра шăнă илме ярать. Кашкăрĕ чупать, чупать йытă хыççăн, анчах çитимаç. Юлашкинчен тарăхса çитет те хӳрине татса илет. Торă патне пырать те калать: «Тортса илимарăм та хӳрине татса илтĕм», — тет. Торă хӳрине илет те çавăркаласа пăхать, карян калать: «Кунтан та пулать», — тет. Карян тăрăшса, тăрăшса тăватех.

### 475

Ĕлĕк-авал, пирĕн пек çынсем пулса кайиччен малтан, пысăк çынсем, улăпсем, пурăннă тет. Çав улăпсен ачи пĕрре уçалма тухнă тет те армутисем тăпăлтара-тăпăлтара утса пынă тет. Армутисем юман вăрманĕ пулнă. Канма ларсан çăпатине хуса силленĕ те тем пысăкăш купа хăварнă. Кайсан-кайсан çак Улăп пĕчĕк кайăксене курать. Ку кайăксем хресченсем, çĕре лашапа сухалаканскерсем пулнă. Çаксене илсе сылтăм кĕсйине чикет те киле илсе каять. «Анне, пăх-ха, мĕнле хитре лайăх кайăксем тупрăм», — тет.

Амăшĕ пăхать те: «Ачам, ку кайăксене ăçтан илтĕн, çавăнта каялла кайса яр. Пирĕн ăру пĕтмелле, малалла çавăн пек çынсем пулса каймалла», — тенĕ. Улăп вара амăшне итлесе каялла кайса ярать плугĕлашисемпех. Çавăн хыççăн улăпсем пĕтсе пирĕн ăру пуçланса кайнă тет.

### 476

Этем чăн малтан упăтерен пулнă пать. Вĕсем порте çăмлă полнă пать. Пĕр çынни çине вĕсем питĕ тарăхнă пать. Çакна вара ыттисем чĕртсе яраççĕ

---

* Шăмă.

пать. Вӑл вара йӑпӑрт-япӑрт поçне тытать пать, поçра çӳç йолать пать, ик хол хошшинчен тытать те, онта çӑм йолать пать. Çавӑнтан вара этем çӑмсӑр йолать пать.

## 477

Тӗнчере малтан никам та пулман тет. Турра пӗччен пурӑнма кичем пулнӑ тет. Вара вӑл çынсене тума шутланӑ. Çырмаран тӑм илет те йӑваласа кӑмакана типме лартать. Хӑй таçта тухса каять. Килсен пӑхать — ытлашши ӗнсе кайнӑ. Вара аяккалла персе ярать. Вӗсенчен хура ӳтлӗ çынсем пулса каяççӗ. Негрсем ӗнтӗ тепӗр майлӑ. Вара тата тепӗр хут йӑвалать те кӑмакана лартать. Шуранка пулнӑ пирки татах аяккалла персе ярать. Çапла вара шур ӳтлӗ çынсем пулса каяççӗ. Турӑ тарӑхса каять те кӗлеткисем çине çу сӗрсе пӑхать. Вара кӑмакана лартать. Ку этемӗ вара хитре, сар сӑнлӑ пулать. Вара сар ӳтлӗ çынсем пулса каяççӗ.

## 478

Турӑ хӑйне кичем пулнипе çынсем туса яма шутлать. Тӑмран йӑваласа тӑвать те хӗвел çинче типӗтет. Хӑшӗсем хӗвел çинче ытла çунса хуралсах каяççӗ. Вӗсенчен негрсем пулса каяççӗ. Хӑшӗсене хӑвӑртрах илет те, вӗсем шурӑ çынсем пулаççӗ.

## 479

Çын тӑпраран пулнӑ тет. Турӑ ун кӗлеткине малтан тунӑ тет, унтан чӗрӗ сывлӑш кӗртнӗ тет. Малтан Турӑ арçынна тунӑ. Ӑна ӗмӗр тӑршшӗпех тӑрантакан пулма туса янӑ. Кайран хӗрарӑма тунӑ. Хӗрарӑмӗ вара йӑха малалла тӑсакан пулнӑ тет.

## 480

...Этем çапла каласан, Турӑ та хӑй йӑнӑшне сиссе, кӑна валли юлташа нимӗнрен тума аптӑраса, пур тунӑ япаласенчен юлнӑ юлашки япаласене пуçтарса вӗсенчен тата тепӗр çын, хӗрарӑм тума тытӑнать.

## 481

Турӑ малтан çӗр тата шыв турӗ тет. Ӑна вӑл икӗ кун хушшинче тунӑ тет. Çиччӗмӗш кунне ывӑннипе канма ларчӗ тет, канмалли кун турӗ тет. Çӗр тунӑ, шыв тунӑ, вӗсемпе ӗçлеме ӗçлекеннисем кирлӗ тет. Вара вӑл тӑмран арçынпа хӗрарӑма турӗ тет, вӗрсе чӗртрӗ тет те çӗр çине ярса: «Ӗçлӗр, пурӑнӑр, эпӗ сире яланах пулӑшса тӑрӑп, эсир тулькка çылӑха ан кӗрӗр, мана итлесе пурӑнӑр», — тенӗ тет.

## 482

Адампа Ева вӑрманта пурӑннӑ тет. Ун чухне сӑпассӑр улма çиме юраман, çылӑх пулать тенӗ. Улма курнӑ тет те Адам, çимасӑр ниепле те чӑтайман. Хӗрарӑмӗ улмине питӗ çитересшӗн пулман тет. Адам Евӑна итлемен, çавӑн пиркиех арçыннин пырне улма ларнӑ.

## 483

Тĕнче пуçланса кайиччен чăн малтан Иоф турă пулат. Вăл пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн тĕнче майлаштарма тытăнат, çĕре, шыва, пĕлĕте тăват, йывăç-курăка тăват. Тата Адампа Евăна тăват. Вара вĕсем, паллах, Турă мĕнле тунă, çаплах пурăннă. Вĕсене валли рай йĕркеленĕ, вĕсем райри çимĕçсемпе тăранса пурăннă. Çав йывăçсен хушшинче пĕр йăвăçăн çимĕçне (улмине) Турă вĕсене çиме хушман. Пĕррехинче Турă хăй таçта кайсан кĕсем патне Шуйттан çĕлен пулса пырат та Евăна калат: «Эсир çак йăвăçăн çимĕçне ма çиместĕр?» — тесе ыйтат. Ева калат: «Ку йăвăçăн çимĕçне пире Турă çиме хушман», — тет. Çĕлен пулнă Шуйттан вара Евăна улталаса çитерет. Кайран Ева Адама çитерет. Улми Адамăн пырне ларать. Улма çисен вара вĕсем пĕр-пĕринчен вăтанса иккĕш те икĕ йăвăç çулçи айне пытанаççĕ. Турă килсен пăхат та Евăпа Адам çуккине асăрхат. Турă кăшкăрат: «Адам, Ева, эсир ăçта тарса пытантăр?» — тесе. (Лешсем çак йăвăçăн çимĕçне çийиччен хăйсем çарамассине ăнланман пулнă.) Лешсем каланă: «Эпир хамăр çарамассипе вăтанса пытантăмăр», — тенĕ. Вара вĕсене Турă çилленет те Адамăн пырне ларнă улмана ĕмĕрлĕхе пырне хăварат. Çавăнпа кашни арçыннăн карланкинче мăкăль «адамăвă яблочко» текенни пулса юлнă тет.

Малалла Турă Адама ĕмĕр-ĕмĕр ака-суха туса асапланса пурăнмалла тăват тет, Евăна нумай ача-пăча çуратса асапланса пурăнма хушат тет. Çĕленне мĕнпур чĕр чунтан урăхла, çĕр çинче хырăмпа шуса çӳремелле тăват тет. Çак ырăпа усала пĕлтерекен йăвăç пулнă тет. Вĕсем çак йăвăç çимĕçне çимен пулсан çĕр çинчи çынсем нихçан та вилместчĕç тет. Çураласси те пулмасчĕ пулĕ ĕнтĕ.

## 484

Ĕлĕк-авал чи малтан çĕрпе пĕлĕт полнă. Çĕр çинче тĕттĕм полнă тет. Торă хĕвелпе ойăха полма ыйтнă тет. Вара çĕр çинче хĕвел те, ойăх та полнă тет. Çĕр çинче чи малтан Адам ятлă çын порăннă. Адама Торă çĕртен тунă тет. Онăн аяк пĕрчинчен ăна валли арăм тунă тет. Онăн арăмĕ Ева ятлă полнă тет. Вĕсем райра порăннă тет. Вара вĕсене осал çылăха кĕртес тесе палми çытарнă тет. Çапла вăсам çылăха кĕнĕ тет те, вăсане Торă райран кăларса янă тет. Вăсан тăхăнмалли полман тет. Çавăнпа вăсам çолçăсемпе хопланкаласа çӳренĕ тет. Çылăха кĕрсен пĕр-пĕринчен вăтанма поçланă тет. Çавсам çылăха кĕмен полсан çĕр çинче çимасăр, ĕçмесĕр порнмалла полнă тет. Адампа Ева çылăха кĕнĕ пирки çĕр çинче вара ĕçлесе, çисе порăнмалла тунă тет.

## 485

Арçын суха тунă, хĕрарăм ăна апат çитерме пынă. Апат çисе лараççĕ тет.

Турă пырать тет, вĕсен тĕлне çитсен çаксенчен çул кăтартма ыйтрĕ тет. Хĕрарăмĕ апат çинĕ хушăрах Турра урапа çул кăтартрĕ тет, арçынни çиме пăрахсах, çул çине тухсах çул кăтартса ячĕ тет.

Турă арçынна:

— Сан ырă кăмăлушăн кăна эпĕ сире пĕрле пурăнмалла тăватăп, — терĕ тет.

Çавăнтан вара арçынпа хĕрарăм пĕрле пурăнса кайнă тет.

## 486

Турӑ ҫынна туса пӗтерсен ҫынсем Турӑ патне арӑм ыйтма пынӑ тет. Малтан тутар (магометанин) пынӑ тет. Ӑна Турӑ ҫичӗ арӑм панӑ тет. Унтан вырӑс пычӗ тет. Ӑна та Турӑ виҫӗ арӑм пачӗ тет. Унтан вара пуп пычӗ тет те, ӑна Турӑ пӗр арӑм пачӗ тет. Кайран манах пычӗ тет. Турӑ ӑна: «Сан валли юлмарӗ», — тесе пӗрре те памарӗ тет.

## 487

Пӗрремӗш ҫынсем тӑванпа тӑван мӑшӑрланса пурӑннӑ. Ют ҫынсем пӗрпӗринпе пӗрремӗш хут ҫапла пӗрлешнӗ: пӗр ҫемьере ывӑлӗпе хӗрӗ пурӑннӑ, анчах амӑшӗ вӗсен тӑван мар пулнӑ; вӑл пӗррехинче ачисене вӑрманта тӗрлӗ ҫӗрте аташтарса хӑварнӑ, ачисем пӗр-пӗрне тупайман. Ывӑлӗ пӗр ял тӗлне ҫитнӗ, хӗрӗ вара тепӗр палламан хӗр ачана тӗл пулнӑ та вӑл ӑна хӑйпе пӗрле илсе кайнӑ. Каярахпа икӗ хӗр ачи пӗр яла кӗнӗ те аташса кайнӑ хӗрӗн пиччӗшне тӗл пулнӑ. Анчах ни пиччӗшӗ, ни аппӑшӗ пӗрпӗрне паллайман, ҫапах та хӑйсене ҫывӑх туйнӑ. Йӗкӗте икӗ хӗрӗ те килӗшнӗ. Вӑл пӗрне качча илме шут тытнӑ, анчах тӑван аппӑшӗ лекесрен шикленнӗ. Каччӑ хӑйӗн аппӑшне качча илни аван маррине ӑнкарса илнӗ. Вара вӑл юмӑҫ патне кайма шут тытнӑ. «Эсӗ ҫак хӗр ачасем умӗнче пуртӑпа ӗҫлеме пуҫла та пӳрнӳне юри кас. Аппу сана хӗрхенсе пӗрремӗш чупса пырӗ. Ҫапла хӑвӑн аппуна уйӑрса илӗн», — тенӗ юмӑҫ. Йӗкӗт ҫапла тунӑ. Пӳрнине кассан тӑван аппӑшӗ: «Ай, пиччем! Эсӗ пӳрнӳне хытӑ касрӑн вӗт!» — тесе кӑшкарса янӑ. Вара йӗкӗт хӑйӗн аппӑшне палласа илнӗ те теприне качча илнӗ. Ҫавӑнтан вара ҫынсем хӑйсен аппӑшӗсене качча илме пӑрахнӑ.

## 488

Ӗлӗк ҫӗр ҫинче малтан Турӑ кӑна пулнӑ тет. Турра пӗччен пурӑнма кичем пулнӑ тет. Вара вӑл ҫынсем тума шутлать тет. Вӑл тӑмран ҫын туса лартать тет те калать тет: «Эпӗ сана кунне пӗрре ҫитермелле тӑвап», — тет. Анчах та ҫын чӗнмен тет. Турӑ татах калать тет: «Апла кунне иккӗ ҫитермелле тӑвап», — тет. Ҫын татах чӗнмест тет. Ҫын чӗнменнипе Турӑ ҫилленсе каять тет. Вара калать тет: «Апла тӑк ху мӗн чул ҫиес тен, ҫавӑн чухлӗ ҫимелле тӑвап», — тет. Ҫын калаҫса ярать тет. Ҫавӑнтан вара ҫӗр ҫинче ҫынсем ҫуралаҫҫӗ тет.

## 489

Этеме пултарсанах Турӑ уйӑхра пӗрре кӑна ҫиме хушнӑ тет. Этем: «Сахал», — тесе каланӑ тет. «Эрнере пӗрре, виҫ кунта пӗрре», — тесе каланӑ тет Турӑ. Этем кунне виҫҫӗ ҫимелле тин килӗшнӗ тет.

## 490

Турӑ этемрен:

— Миҫе хут ҫисен пурӑнма пултаран? Ҫулталӑкне пӗрре ҫисен пултаратӑн-и? — тесе ыйтнӑ тет.

— Уй-уй! — тесе хăраса ӳкнĕ тет этем.
— Ну, эппин иккĕ çисен пурăнатăн-и? — тесе каланă тет Турри.
— Уй-уй! — тенĕ тет этемми каллех.
— Эппин, уйăхне пĕрре çисен пурăнатăн-и? — тенĕ тет Турри.
Вара Турă ăна:
— Çи те тула тух, çи те тула тух! — тесе каланă тет.
Çавăнпа этем кунне темиçе хут çиет те тула тухать тет.

## 491

Тĕнчене Турă тунă. Çынсем ун чух сахал пулнă. Тĕнче çуралнă чух Турă çынсенчен ыйтнă тет:
— Пĕрре çинипе çитет-и?
Çынсем чĕнмен тет.
— Иккĕ çинипе çитет-и? — тесе каланă тет Турă.
Çыннисем каллех чĕнмен тет.
Вара Турă:
— Çийĕр эппин выльăх пек, — тесе каланă тет.

## 492

Турă этеме пултарсан Адам патне чунлă япаласене пурне те ят хума илсе пынă. Адам вара пур тăватă ураллă япаласен ятне хучĕ тет, унтан вĕçен кайăксен ячĕсене хучĕ тет. Анчах ят хума пĕр чĕрĕп кăна вăхăтра çитеймерĕ тет. Çак чĕрĕпĕн ячĕ мĕнле пулĕ-ши тесе пурте чĕрĕпе кĕтсе тăраççĕ тет.

Кĕтсен-кĕтсен хай чĕрĕп те пырса çитрĕ тет. Çитсессĕн чĕрĕпĕн ятне хума Адам патне пĕр пӳлĕме кĕмелле пулчĕ тет. Алăкран кĕнĕ чухне чĕрĕп такăнчĕ тет те хăйĕн ăнман сывлăшне «шатăрт» тутарса хыçалти шăтăкĕнчен кăларса ячĕ тет. Çакăн хыççăн чĕрĕпрен Адам та, выльăх-чĕрлĕх те ахăлтатса кулса ячĕç тет.

Чĕрĕп хăйĕнчен кулнăран кăмăлсăр пулса çапла каларĕ тет: «Эсир çапла манран кулнăшăн хăвăр та ăнман сывлăш кăлармалла пултăр», — тесе ылханчĕ тет. Çавăнтан вара этем те, выльăх-чĕрлĕх те ăнман сывлăш кăлармалла пулчĕçĕ тет.

## 493

Турă çын ӳтне туса пĕтерсен чун илме кайрĕ тет, ӳтне йытта хуралламa хушрĕ тет. Йытă патне Усал пычĕ тет те:
— Çын ӳтне кăтарт мана, — тесе ыйтрĕ тет.
Йытти памарĕ тет.
Усалĕ:
— Сана кĕрĕк парăп уншăн, — терĕ тет.
Вара йытă Усала кăтартрĕ тет çын ӳтне. Усал çын ӳчĕ çине сурса пĕтерчĕ тет те кайрĕ тет. Турă килсен çакна курчĕ тет те çын кĕлеткине тепĕр хут унарĕ тет, Усал сурчăкĕсем веçех шала юлчĕç тет. Çавăнпа çыннăн сурчăк та, манка та пулчĕ тет.

11. Заказ № К-4231.

## 494

Турă çынна тăнран* тунă. Ăшне чун хушас тенĕ. Чунĕ хунь** çумĕнче пулман, çавăнпа ăна илме аякка кайнă. Çын кĕлеткине пăхма йăтта хăварнă. Çав вăхăтра Шуйттан пынă та йăтта шăнă парса çынна хунь сĕлехипе лапăртанă. Йăтă шăнă çиса пăхиман та, Турă таврăннă. Çынна лапăртаттарнăшăн йăтта: «Сана пур çын та ваттăр, çима шăнă анчах патăр», — тенĕ Турă. Çынна тепĕр хут тăвасран унăн ўтне таварса чун хушнă, çавăнпа çынсен сĕлеке, сăмса юхать.

## 495

Турă тăмран çын тунă тет те хĕвелпе хытарма хунă тет. Шуйттан ун патне пынă тет те сăмси айне лач! сурса хунă тет. Çавăнпа çыннăн сăмси айĕнче халь те пулин юхса çўрет тет.

## 496

Çынна тăпраран тунă теççĕ, анчах унăн ăшне чун кўртме пĕлмен тет. Вара чун епле кўртмелле-ши тесе ыйтма çынна тăваканни Турă патне кайрĕ тет. Турă патĕнчен киличчен этем кĕлетки патне Шуйттан пырса ăна манкапа вараларĕ тет. Кайран çынна тăваканни Турă патĕнчен килсен пăхать — этем кĕлеткине манкапа вараланă. Вара çав манка çинчен тата тăпра çыпăçтарчĕ тет. Этем вара манкаллă-сурчăклă пулчĕ тет.

## 497

Турă малтанах этеме пит хитре, илемлĕ тунă. Унăн сăнĕ пан улми пек хĕрлĕ, çутă пулнă, йăлтăртатса тăнă. Ўтне тăмран йăваласа тунă та хăй этем валли чун шырама кайнă. Çав вăхăтра Шуйттан пынă та этеме манка-сурчăкпа лапăртаттарса пĕтернĕ. Чун илсе пырсан пăхать Турă: этем юрăхсăр. Турă вара этеме çавăрса лапăрчăкне варне хăварнă, ăшне тулалла çавăрнă. Кайран этем малтанхи пек илемлĕ пулайман. Манки-сурчăкĕ тухса пĕтсен вилмелле пулнă.

## 498

Чăн малтанхи çынна Турă тăпраран туса лартнă, ун ăшне чун вĕрсе кĕртиччен таçта каймалла пулнă Туррăн. Вăл вара хăйĕн анчах туса лартнă кĕлетки патне йытта чĕнсе илнĕ те ăна çав кĕлеткене хурал тăма хушса хăварнă, хăй таçта васкаса кайнă. Турă кайсанах йытти те кĕлетке патĕнчен аяккалла утнă. Çав кĕлетке патĕнче ни Турă, ни йытă çук вăхăтра усал пынă та çав Турă анчах тунă кĕлетке çине манка сурса сăмсапа вараласа пĕтернĕ те кайнă. Усал лапăртаса кайсанах Турă хăй кайнă çĕртен таврăнса пынă. Пăхать: кĕлетке пĕтĕмпе сăмсапа манка ăшĕнче, çине пăхмалла та мар. Турă вара ку лапăрчăк кĕлеткене илет те тепĕр енне тавăрса лартать. Турă çапла тавăрса лартсан хăй кĕлетке çинче пур лапăрчăксем пурте çын ăшне кайнă, кĕлетке ăшĕнчи таса ўт çиеле тухнă. Вара капла майлăрах кĕлетке пулсан Турă ун ăшне чун кĕртнĕ. Чун кĕрсен çын

---

* Тăмран.
** Хăй.

çӳре пуçланă, анчах ун ăшĕнчен яланах манка çĕрсе тухса тăнă. Çавăнпа халь те çын ăшĕнчен кунĕн-çĕрĕн темĕскер çĕрсе тухать, хăть çын çине пăхма таса пек пулсан та.

Çав çын ӳтне (кĕлеткине) хурал тăма хушса хăварнă йытта Турă хăй сăмахне итлеменшĕн нушта курмалла тунă. Çав хăй хурал тăмасăр лапăртаттарнă кĕлеткерен пулнă çынах çав йытта халь пур тĕслĕ хĕн кăтартать, çапать, килтен хуса кăларса ярать, çитермесĕр усрать, тавар пуçтаракана сутса ярать е тата урăх тĕрлĕ нушта кăтартма та пултарать. Çапла ĕнтĕ Турă кирек мĕнле те хăй сăмахне итлемесессĕн нушта курмалла тăвать».

## 499

Типĕ çĕре тусассăн Турă çав çĕр çинче пурăнмашкăн хăй тĕслĕ, хăй евĕрлĕ ăслă чĕр чуна, этеме, тума шухăш тытнă. Вăл тăм илнĕ те хăй евĕрлĕ кĕлеткесем йăваласа тунă. Кĕлеткесен ăшне чун кĕртмелле пулнă. Чунĕсене илме Пӳлĕх патне каймалла пулнă. Пӳлĕх патне каяс умĕн Турă йытта чĕнсе илнĕ те каланă:

— Эпĕ çак кĕлеткесем валли чун илме каятăп, эсĕ вĕсене хам таврăниччен хуралла. Шуйттана çывăха ан яр! — тенĕ.

Турă курăнми пулсанах Шуйттан йытă патне пынă та йăпăлтатма тытăннă. Вăл каланă:

— Кала-халĕ, Йытă тусăм, мĕншĕн эсĕ кĕлеткесене ахалех хураллатăн? Уншăн сана Турă нимĕн те памасть мар-и? Пар эсĕ вăл кĕлеткесене мана. Уншăн эпĕ сана кĕрĕк парăп, вăл сана сивĕре ăшăтĕ, — тенĕ.

Йытă шухăшланă-шухăшланă та, вăл Турăшăн чăнах та ахалех ĕçлени курăннă. Шуйттан сĕннĕ ăшă кĕрĕке те тăхăнасси килнĕ хăй йыттăн. Вара вăл чăтайман, Турă сăмахĕнчен тухса кĕлеткисене Шуйттан аллине панă.

Лешĕ этем кĕлеткисем патне пынă та Турра инкек тăвас шухăшĕпе унăн ĕçне пăсма тытăннă. Вăл этемсен илемлĕ кĕлеткисене хăйĕн вăрăм чĕрнисемпе йăлт чĕркелесе пĕтернĕ, пылчăкпа тата манкапа сĕрсе илемсĕрлетнĕ. Унтан хăйĕн ирсĕр ĕçне пĕтерсен йытта кĕрĕк тыттарнă та хăй васкаса тарнă. Йытă кĕрĕке тăхăннă та хăйне ăшă пулнăшăн савăнса Турă таврăнассине кĕтсе выртнă.

Акă хайхи Турă чун илсе таврăннă. Этем кĕлеткисем патне васкаса пынă та пит кăмăлсăр пулнă, тарăхнă, вăл Шуйттанăн ĕçне витĕр курнă. Вăл кĕлеткесене илнĕ те çума тытăннă. Анчах темле тăрăшса çусан та вараланчăксене пурне те çуса тасатайман, кĕлеткесен малтанхи илемĕ таврăнайман. Хăшĕн пит çăмартисенче чĕрне йĕррисем шатра пулса юлнă, хăшĕн ӳт-тирĕсем тĕксĕм, хура тĕслĕ пулса юлнă, пурин те пекех сăмса айĕнче манка юлнă. Турă кашни кĕлеткене чун кĕртнĕ те, кĕлеткисем чĕрĕ этемсем пулса утса çӳреме тата калаçма тытăннă. Анчах чĕрĕ çынсен те ӳчĕсем çинче Шуйттан пăснă йĕрсем палăрнă, вĕсем этемсен сăнĕсен илемлĕхне тĕксĕмлетнĕ, пăснă.

Турă вара çилленнипе кĕрĕкшĕн шанчăкне çухатнă йытта ылханнă. Вăл йытта çапла каланă:

— Эсĕ хăвăн кĕрĕкӳпе ĕмĕрӳне ирттерĕн, урăх сана нимĕнле ырлăх та пулмĕ. Эсĕ ĕмĕр этем чури пулăн. Этемсем сана тапчăр, хĕнеччĕр, шăнă тата салат пăтти анчах паччăр! — тенĕ.

Çавăнпа йытă халь те этем чури пулса тăрать, унран патак та çиет, хăй çапах хуçине пăрахмасть.

## 500

Çынна Торă çичĕ пайран тонă тет. Çĕртен кĕлеткине тонă полать, тинĕсрен — юнне, çилрен — холхисене (иккĕ), хĕвелтен коçĕсене (иккĕ), чолтан — шăннисене.

Торă чи малтан çыннăнне кĕлеткине тоса хонă тет, вара типме хорса хăварнă тет те коçне илме Горный Иерусалима кайнă тет. Çав вăхăтра çын патне Шойттан пырать те çынна веç сорса лапăртаса пĕтерет. Торă килнине корсан тарать. Пырать те Торă корать: çын веç лапăртанса пĕтнĕ, вара Торă çынна хăй коççолĕпе çоса тасатать. Онтан коçне лартса парать те татах типме хорать, хăй çынна сыхлама йытă тăвать. Йыттине сăнчăрпа кăкарса хăварать те хăй çын валли звук* илме çил патне каять. Торă звук илме кайсан конта каллех Шойттан пырса çитет. Шойттан пынине сиссе йытă siksе тохать те вĕрсе ярать. Шойттан малтан хăраса ӳкет, кайран йытта кăкарса хонине корать те чееленме шотлать. Вăрăм шоччă шыраса топать те çынна çитмĕл те çичĕ çĕртен шăтарса пĕтерет.

Торă килет те корать, çынна весь ранить** тоса пĕтернĕ. Вара Торă тарăхнипе: «Этемме ма тиврĕн, окаянный сатана?!» — тесе кăшкăрса ярать. Кона илтсен Шойттанĕ: «Çын çинче чир полтăр, атто çын иртĕхсе кайма, сана манма полтарать, вăл хăйне эсĕ тонине те ĕненме пăрахать, сана асăнма та пăрахать, — тет. — Чир полсан çын ирĕксĕрех сан коçăнтан пăхĕ, сана яланах асăнса, санран помогать*** тума ыйтса тархаслĕ, сана поççапса чыс тăвĕ», — тет. Торă вара Шойттан чăн та тĕрĕс калать поль тет. Çавăнпа халь этем ывăль-хĕрĕ çомĕнче çитмĕл те çичĕ тĕрлĕ чир тĕл полать.

## 501

Çĕр питне туса пĕтернĕ хыççăн Турă этеме тума тытăннă тет. Этеме вăл тăмран тунă тет, анчах унăн чунне килте манса хăварнă тет, илме кайма этеме Шуйттан ватасран хăрать тет. Вара йытта хурала хăварсах этем чунне илме кайрĕ тет.

Шуйттан çав хушăра пырать тет те йытта аяккалла аш пăрахса парать тет. Йытă аш çиме тытăнсанах Шуйттан тăм кĕлеткине çурмалла çурать тет, çăра сурчăк сурса каялла çыпăçтарать тет. Турă та çитет те этем кĕлеткине чун кĕртет тет. Этем чĕрĕлсе утса çӳреме, пурăнма тытăнать тет. Анчах ӳслĕк ӳсĕрет тет, чыхăнса сурать тет, мĕншĕн çапла пулнине хăй те пĕлмест тет.

— Ма ӳсĕрен? — тет Турă этеме.

— Пĕлместĕп, — тет этем.

Турă йытта вăрçма пуçларĕ тет:

— Этем патне кама ятăн? — тесе.

Йытă малтанах айăпа йышăнмарĕ тет, каярах çеç йышăнса каларĕ тет.

— Эсĕ ĕмĕр-ĕмĕрех этем хуралçи пул, — терĕ тет Турри.

Çавăнпа йытă паян кун та этемĕн хуралçи пулса пурăнать тет.

---

* Сасă, калаçу чĕлхи.

** Суранлатса.

*** Пулăшма.

### 502

Турă тĕнчене пултарсан улттăмĕш кун тăватă ураллă чунлă япаласене пултарнă. Турă малтан йытта çарамас тунă тет. Унтан вара çав кунах этеме пултарнă. Этеме Турă çăмлă тунă тет. Туррин этем кĕлеткине тусан этем валли чун илме пĕлĕт çине каймалла пулнă тет, йыттине этем кĕлеткине сыхлама хушса хăварчĕ тет. Шуйттан епле те пулин çынна урăхла тăвасшăн пулнă тет. Турă пĕлĕт çине этем валли чун илме кайсан Шуйттан рай пахчине пычĕ тет те йытта хăйне этем кĕлетки патне яма йăлăнма пуçларĕ тет. Шуйттан хăйне этем кĕлетки патне ярсан йытта çăмлă тир пама пулчĕ тет. Йытти, шăннăскер, Шуйттан тир пама пулсан ăна этем кĕлетки патне яма пулчĕ тет. Вара Шуйттан йытă çине çăмлă тир витрĕ тет те хăй этем кĕлетки çине пĕтĕмпех сурса пĕтерчĕ тет. Турă этем валли чун илсе килсен курать этемĕн кĕлетки çине пĕтĕмпе сурса тултарнине. Часрах вара Турă этем çинчи çăмлă тирне çавăрса тӳнтерле май тавăрса этем çине тăхăнтарса хучĕ тет.

Çапла ĕнтĕ, этеме Турă малтан çăмлă тунă тет, анчах Шуйттан мăшкăлласа этеме çарамас тумалла тунă. Çавăнпа та халĕ çынсем пĕрмаях ӳсĕрсе çӳреççĕ, Шуйттан ӳслĕкĕнчен халĕ те тасалаймаççĕ тет. Йытта Турă ылханса, çавăнтан вара çăмлă туса тулта пурăнмалла турĕ тет.

### 503

Турă этем çурине çĕр çине пăрахнă. Ăна хĕрарăм корнă та чопса пырса чĕрçи çине тытнă. Торă хĕрарăма:

— Çолталăксăр отма ан вĕрентĕр, çолталăк çĕклесе çӳремелле полтăр, — тенĕ.

Йытă çурине пенĕ те — лешĕ упаленсе кайнă. Торă каланă:

— Ик эрнесĕр коçĕ ан оçăлтăр, — тенĕ.

### 504

Турă этеме кайăк евĕрлĕ, çуралсанах ури çине тăрса утса çӳреме пултаракан тăвасшăн пулнă. Çавăнпа вăл пирвайхи арăма ача панă чухне ачи хăех ури çине тăтăр тесе ачана пĕлĕт çинчен çĕре пăрахнă. Арăм ача ӳкнине курнă та ăна хăйĕн кĕпе аркийĕпе тытса илнĕ.

Турри хĕрарăм ăна шанманшăн кăмăлсăр пулса çапла каланă:

— Эсĕ мана шанманшăн ачу виç çулччен хăвăн чĕрçийĕнчен анмĕ, — тенĕ.

Çавăнпа ĕнтĕ халь те амăшĕсем ачисене виç çула çитиччченех хăйсен чĕрçи çине лартаççĕ тата хăйсем йăтса çӳреççĕ.

## Халăх тата чĕлхепе тĕн пулса кайни

### 505

Чăвашсем ама йăхран пулса кайнă. Авал вĕсен ама çар пулнă. Утлă амасем тăшмана хытă хăваланă. Амасен хĕçĕ хурçăран, тумĕ тимĕртен пулнă. Йăхра ама пуç пулса пурăннă. Ама çарта Салама хĕр малта тăнă. Çавă пит ăслă та хитре пулнă. Аслисем унран хăранă, ухмахсем ăна ăмсаннă. Салама пĕр çапăçура пуçне хурсан ăна хула карти туса пытарнă.

## 506

Турă ĕлĕк-авал, этемсене пултарнă чухнех, кашни халăхăн тĕнĕ пултăр, хăйĕн чĕлхи пултăр тенĕ. Çавăнпа халĕ чăвашсемпе тутарсем тата ыттисем хăйсен чĕлхисемпе калаçаççĕ, хăйсен тĕнĕсемпе пурăнаççĕ.

Çавăн пекех ытти халăх та хăй чĕлхипе калаçать. Турă кама мĕн парассине хăй пĕлсе панă. Çавăнпа хăшне çăмăл чĕлхе, хăшне йывăр чĕлхе панă теççĕ. Халăхсем пурте пĕр чĕлхепе калаçсан мана пĕр тĕрлĕ халăх кăна кĕлĕ тăвĕ тенĕ. Темиçе тĕрлĕ халăх пулсан вара мана тимлесе тĕрлĕ чĕлхепе кĕлĕ тăвĕç, мухтĕç тенĕ. Вара темиçе чĕлхеллĕ халăх тунă.

Турă кама мĕнле тĕн парассине те малтанах пĕлсе тăнă. Чăваш тĕнне Турă чи малтан панă. Ун хыçĕнчен ытти тĕнсене те панă.

## 507

Чăвашсем ăнланнă тăршшинчен чăваш тĕнĕ ĕлĕк-авалах пулнă. Тутарсем те ĕлĕк чăваш тĕнĕпе пурăннă, кайран темле аташса тутара тухса кайнă, вĕсем тутара тухни пит нумай пулмасть-ха теççĕ. Тĕне кĕмен чăвашсем мункуна асап эрнинче юн кун тăваççĕ. Вĕсенчен мĕншĕн эсир ку мункуна асап эрнинче тăватăр тесе ыйтсан: «Еней, пирĕн мункун сирĕннинчен малтан, тахçанах пулнă, çавăнпа эпир сиртен малтан праçник тăватпăр», — теççĕ. Мĕне асăнса тăватăр ăна тесе ыйтсан: «Паянхи кун Турă пире тĕн панă, вăл тĕне Турă пире ик енлĕ панă: малтан, тĕнче пулсанах, çын нумай пулман, çитмĕл те çиччĕ анчах пулнă. Çав çынсене Турă пĕр ту çине пуçтарнă та каланă: кама мĕнле тĕн кирлĕ, вăл çавна йышăнтăр тенĕ. Çав чухне пирĕн тĕп Атте «Ярхункке» мана чăваш тĕнĕ пултăр тенĕ. Çав кунтан вара чăваш тĕнĕ, чăваш чĕлхи пуçланса кайнă, унччен пĕр тĕн те пулман. Халь ĕнтĕ тĕнчере мĕнпурĕ çитмĕл те çичĕ тĕслĕ тĕн теççĕ. Чăвашсем пурте пирĕн тĕн çапла пуçланса кайнă тесе тавлаççĕ, пурте çапла тăнласа ĕненеççĕ».

## 508

Тата чăвашсам пирĕн хутра виçĕ тĕслĕ халăх, виçĕ тĕслĕ тĕн теççĕ. Чăваш тĕнĕ, тутар тĕнĕ, вырăс тĕнĕ анчах теççĕ. Тата чăвашсам пире Турах çапла пултарнă, калаçма та çавах вĕрентнĕ теççĕ: Чăваша хăй тĕнпех пурăнмалла тунă. Чăвашăн вырăс тĕнне тытма юрамасть теççĕ.

## 509

Малтанах пурте киреметсĕсем пулнă. Анчах та пĕринче чăвашсене пĕр çĕре пухăнса чиркӳ лартма хушнă.

Пĕрисем тӳрех тапранса тухнă, теприсем каярах хускалнă. Маларах тухнисем çав кунах вырăна çитнĕ, каярах тухнисен çул çинче çĕр выртмалла пулса тухнă. Кайран хускалнисем çул çинче икĕ хăвăл йывăç тĕл пулсан унта чарăннă та каланă: «Çакă пирĕн керем!»

Çав вăхăтранпа пĕрисем вырăс тĕнĕпе пурăнма пуçланă, теприсем хăйсен авалхи тĕннех ĕненнĕ.

## 510

Малтанхи çыннăн арăмĕ хĕрĕх хырăм çĕкленĕ, хĕрĕхĕш те йĕкреш пулнă, анчах йĕкрешĕсем ывăл та хĕр, ывăл та хĕр, ывăл та хĕр пулнă, çураласса та тĕрлĕ, хăйне Турă панă чĕлхепе çуралнă. Çавăнпа тĕнчере тĕрлĕ халăх пулса кайнă, вĕсем вара çуралнă чухнех хăйне кирлĕ тĕнпе çуралнă тет.

## 511

Таçта хĕрĕх ăста мичĕт лартнă. Вĕсем мичĕте хĕрĕх çул купаланă, анчах пĕр хăлаçран çӳлерех хăпартайман. Çурчĕ хăпарас вырăнне аялалла, çĕр айнелле, анса пынă. Хĕрĕх султан ăстасем пăлханса кайнă. Пĕрисем ĕçе малалла тăсас тенĕ, теприсем чарăнас тенĕ. Итрис патша мичĕте туса пĕтерттересшĕн пулнă. Ăстасем аран-аран çурта купаласа пĕтернĕ те Итрис патшаран ыйтмасăрах тăррине юпа вырăнне хĕрес лартса хунă. Капла тусанах хĕрĕх çул купаланă çурт сасартăках çӳлелле çĕкленсе капмарланса ларнă. Хăйне итлемен ăстасене Итрис тĕрлĕ çĕре хăваласа янă, вĕсене тăван чĕлхепе калаçма чарнă. Ăстасен ирĕксĕрех урăх чĕлхесем вĕренмелле пулса тухнă. Итлемесен вĕлерессипе хăратнă. Çав çынсем пĕр-пĕринпе ютшăнсан вĕсенчен вара çитмĕл те çичĕ чĕлхе тухса кайнă.

## 512

Чăвашсем калаççĕ, çынсем нимĕскере те кĕлтуман тата ниме те парне кӳмен теççĕ. Вара çынсем хăйсем шухăшласа кăлара пуçланă, епле кĕлтăвасси çинчен. Вĕсем каланă: «Пирĕн кама та пулсан кĕлтăвасчĕ», — тесе. Епле кĕлтăвассине, кама кĕлтумаллине пĕлеймен. Пĕр вăхăтра пĕр пӳрте, çĕрле, çитĕннĕ хĕрсем улаха пухăннă. Çав хĕрсем ăçта епле кирлĕ кĕлтăвасси çинчен калаçа пуçланă. Пĕр хĕрĕ ларнă вут пуленки çине. Вăл тăнă та хăй вырăнĕ çинчен каланă: «Акă ман айăмра пуленке, килĕр ăна пуççапар. Пирĕн кĕлĕ илтĕнĕ вара кама та пулсан». Çитĕннĕ хĕрсем çав хĕр çапла каланине итлесе пурте пуççапа пуçланă çав пуленкене. Çавăнтан вара çав пуленке выртакан çĕре пыма та юраман, ун патĕнче шавлама та, кăшкăрма та хăра пуçланă. Çавăнтан вара чăвашсем пурте çав пуленкене пуççапма пуçланă, тата ытти ялсем те вĕсене курса çавсем пекех пуççапа пуçланă.

## 513

Малтанах çынсем пуççапнă кăна, чӳк тăвасси пулман-ха. Пĕр тăлăх хĕр вăрманта çухалса кайнă. Ăна пĕр палламан хĕр тĕл пулать те хăй патне киле чĕнет. Лешĕ килĕшнĕ. Килне пырсан хĕрсем пĕр-пĕрне килĕштерсе пăрахаççĕ, туслашаççĕ. Хĕре илсе килни ун амăшĕ тухатмăш, çын çиен пулни çинчен каласа парать: тăлăх хĕре курсан вăл ăна çисе яма пултарать тет. Тăлăх хĕр хăраса ӳкет те йĕрсе ярать. Хĕр тусĕ ăна лăплантарать, амăшне çиме памасса шантарать. Кĕçех тухатмăш-çын çиен амăшĕн ура сасси илтĕнсе каять. Тухатмăш хĕрĕ тăлăха çавăнтах кăмрăк туса хучĕ. Пӳрте амăшĕ кĕчĕ те калать:

— Ух, этем шăршийĕ кĕрет!

— Мĕн этем шăршийĕ пултăр, — тет хĕрĕ. — Шăрш пулмасăр! Эпĕ кунĕ-кунĕпе килте ларатăп та.

Амăшĕ ăна ĕненмерĕ, васкасах кăмрăк çиме пуçларĕ. Хĕрĕ пĕр пĕчĕк кăмрăк муклашкине пытарса хăварчĕ-хăварчех амăшĕнчен. Амăшĕ тула тухсан хĕр çак кăмрăкран каллех тăлăх хĕре туса хучĕ.

Анчах вĕсем лăпкăн нумаях лараймаң: тухатмăш амăшĕ çывхарнине сиссе тăлăх хальхинче хăйăсем туса хурать. Тухатмăш кĕчĕ те каллех çав сăмахсене калать. Хĕрĕ каллех хуравлать:

— Ниепле этем те çук, хăвăнтан этем шăрши килет.

Амăшĕ ĕненмесĕр хăйăсене урса кайсах çиме тытăнать. Хĕрĕ каллех пĕр пĕчĕк хăййине пытарса хăварчĕ те амăшĕ патĕнче кун пек пурăнма май çукки, тухса каймалли çинчен калать. Хĕрсем кĕвенте, икĕ витре, курка илчĕç те вăрманти юхан шыв патне кайрĕç. Çыран хĕрне çитсен тухатмăш хĕрĕ икĕ витререн кимĕ турĕ, кĕвентинчен кимĕ тытмалли кĕсмен, куркинчен ишкĕч турĕ те, хытă юхакан шыва май ишсе кайрĕç.

Пĕр палламан чăваш ялĕ тĕлне ишсе çитеççĕ. Ялĕ юхан шыв тăрук тепĕр еннелле пăрăнса хĕрлĕ çыр тунă вырăнта ларнă. Хĕрлĕ çыр тĕлĕнче шыв пĕр вырăнтах çаврăнса тăрать. Хĕрсем çак шыв авăрĕнчен ниепле те ишсе иртеймеççĕ. Авăртан тухма вăй çитереймен енне хĕрсем çапла юрласа янă:

Хĕрлĕ çырта хĕр ларать,
Хĕрлĕ вăкăр чӳк калать,
Сарă тиркĕпе юсман калать.

Çак юрра илтсен ял çыннисем хĕрлĕ çыр хĕрне чупса пынă та хĕрсем мĕн каланине пурнăçланă: хĕрлĕ вăкăр пуснă, тирĕкпе юсман илсе пынă, çавăнта пĕрремĕш хут халăхпа пухăнса пуççапнă, ăна учӳк тенĕ. Вара хĕрсен киммĕи хăех авăртан йĕркеллех ишсе тухнă та малалла ишсе кайнă. Çакăн хыççăн чăвашсем кашни çулах учӳк тума тытăннă.

## 514

Чăвашсем пĕр-пĕрин хушшинче калаçнă чух чӳк тума Турă хушнă тесе пĕрне-пĕри çапла шантарса калаççĕ.

Ĕлĕк пĕр çыннăн пĕртте ача-пăча пулман тет. Çавăнпа вăл çын ялан: «Эй, Турă! Эй, Турă!» — тесе каласа çӳрет тет. Вăл çыннăн сассине Турă илтнĕ тет. Турă вара пĕр Пирĕштене чĕнсе илнĕ те каланă: «Çав çын мĕншĕн мана пит асăнать-ши, кайса кил-ха ун патне, мĕн ыйтать вăл?» — тенĕ. Пирĕште ун патне пынă та каланă: «Мĕн ыйтан капла эсĕ? Ялан Турра асăнан», — тенĕ. Çын каланă: «Манăн кун чухлĕ ĕмĕрлесе пĕр ывăл та çуралман, эпĕ хуйхăрманне кам хуйхăртăр, эпир вилсен пирĕн пурлăхăмăр кама юлать», — тенĕ. Пирĕште вара çӳле Турă патне кайнă та каланă: «Вăл çын ывăл çукран пит хуйхăрать», — тенĕ. Турă каланă: «Кайса кала уна, ывăл ача çуралĕ унăн, 18 çула çитсессĕн ачине мана калла парнене парăн тесен çавна кӳренĕ-ши?» — тенĕ. Пирĕште кайса каланă Турă çапла калать тесе. Вăл çын каланă: «Турă парсан каялла илме те ирĕкĕ пур, эпĕ унччен савăнса пурăнăп», — тенĕ. Пирĕште кайса каланă, вара Турă вăл çынна ывăл панă. Ывăл çуралсан старикпе карчăк савăнса пурăннă. Ывăлĕ 18 çула çитсен ывăлне каланă: «Ачам, эпĕ сана вăхăта кăна ыйтса илтĕм. Халĕ сана парнене кӳмелле, кӳнетĕн-и?» — тенĕ. Ывăлĕ каланă: «Эпĕ Турă хушнинчен пуç туртмастăп», — тенĕ, вара старик ывăлне илнĕ те ту çине

кайнă. Ту çине ăлăхсан старик вут хунă та, ывăлне вырттарса пусас кăна тенĕ чух хай Пирĕште килсе аллинчен тытса каланă: «Ан тив ывăлна. Турă сана сăнаса кăна çапла турĕ, веç çавăнта пĕр шурă ылттăн мăйракаллă сурăх таки пур, çавна парнене кӳр!» — тенĕ. Старик каланă: «Вăл мана тыттармĕ!» — тенĕ. Пирĕште каланă: «Вăл сана тыттарĕ, эсĕ ун çине шыв ярса силлентер те пусса пĕçер, какайне ан çи, тирĕпе чĕркесе çĕре чавса хур, яшкине çийĕр», — тенĕ.

Старик Пирĕште хушнă пек тунă, вара ывăлĕ хăйне юлнă. Выльăх чӳкĕ тăвасси çавăнтан пуçланса кайнă. Халь те пулсан выльăх чӳкне: «Турă хăй хушнă, ăна пăрахма юрамасть», — тесе пит чăнласа, сыхланса, пит килĕшӳллĕ чӳклеççĕ.

## 515

Тĕрĕс пурнăçлă икĕ арлă-арăмлă çынна шуйттансем сылăха кĕртме вун икĕ çултанпа тăрăшнă: сылăха кĕртме мар, çывăха та пырайман. Çичĕ хăлаç аякран çаврăнса кайнă.

Шуйттансем аптраса чее-ултавçă арăм патне пынă та каланă:

— Эпĕр арлă-арăмлă пурăнакан çынна сылăха кĕртме вун икĕ çултанпа тăрăшатпăр, сылăха кĕртме мар, çывăха та пыраймастпăр, мĕнле сылăха кĕртмеллине эсĕ пире ăс пар. Эс пире ăс парсан эпир сана чаплă çын тăвăпăр, пур çын та сана йăлăнĕ, — тенĕ.

Арăм каланă:

— Эпĕ сире сылăха кĕртме мар, иккĕшĕн ăшне те кĕртĕп, кайса хатĕрленсе тăрăр, — тенĕ.

Шуйттансем ун патĕнчен тĕрĕс пурнăçлă арлă-арăмлă çын патне кайнă. Тепĕр кун ирхине тĕрĕс пурăнакан çын сухана кайнă.

Ун арăмĕ патне чее-ултавçă арăм пынă та:

— Аван-и, сывă-и? — тенĕ.

Таса пурăнакан арăм:

— Аван, килех, — тенĕ. — Аванне аван та, упăшка сухаран таврăнса апат пит çимест, те тиркет? — тенĕ.

Ултавçă арăм каланă:

— Апла вăл ăçтан апат çитĕр? Вăл пуян çын хĕрне ернĕ, çавă чыслать ăна. Эпĕ пĕрре куртăм: вĕсем иккĕшĕ хирте, суха тунă çĕрте, пит тутлă апат çисе ларатчĕç. Ман сăмаха ĕненмесен пĕр-пĕр хушăра ху та курăн, — тенĕ.

Тепĕр кун ирхине упăшки сухана кайнă. Арăмĕ апата пымалла пулнă. Хайхи ултавçă арăм лайăх тумланнă, пуçне тухья тăхăннă, аллине пĕр ленкес илнĕ те таса пурăнакан çын сухалакан ана патнерех лупашкана кайса выртнă. Суха сухалаканăн арăмĕ апата пынине курнă та çывхарах пырсан лупашкран тухса тарнă. Суха сухалаканăн арăмĕ курнă та шухăшланă: «Чăнах хайхи, авă упăшканăн ерĕшкийĕ лупашкаран тухса тарчĕ», — тенĕ. Упăшки патне пынă та çитерме хатĕрленĕ. Упăшки ун чуҳне те питех çимен. Арăмĕ вăрçа пуçланă:

— Эпĕ пĕçернĕ апата çиместĕн, ерĕшкӳ килсе çитернĕ апат тутлă пулчĕ пуль, — тесе.

Çапла арăмĕ яланах вăрçнă, упăшки ним тума пĕлмен, аптраса çӳренĕ. Пĕр икĕ-виçĕ кун пурăнсан упăшки анана кайнине курнă та ултавçă арăм витре йăтса ăна хирĕç шыва кайма тухнă.

— Аван-и, сывă-и? — тенĕ.

Тĕрĕс пурăнакан çын:
— Аванне аван та, арăм пăсăлчĕ, куллен вăрçать, — тенĕ.
Ултавçă арăм каланă:
— Вăл санпа вăрçмасăр кампа вăрçмалла? Вăл сантан хитре çамрăк ачана ертсе пурăнать. Куллен, çынсем акана кайса пĕтсен, кăнтăрла тĕлĕнче унăн ерĕшкийĕ пырса, кĕлете кĕрсе, тӳшек çинче çывраççĕ. Манăн сăмаха ĕненмесен кăнтăрла тĕлĕнче ху килсе пăх, — тенĕ.
Тĕрĕс пурăнакан çын сухана кайнă, чее-ултавçă арăм шыва кайнă. Кăнтăрла çитес умĕн ултавçă арăм, ача пек, шашкă çĕлĕк тăхăнса, каччă пулса, таса пурăнакан çынсен картине кĕрсе, упăшки таврăнасса шăтăкран пăхса тăнă. Вăл вăхăтра таса пурăнакан арăм кĕлете тӳшек çине канма кĕрсе выртнă. Унăн упăшки, чăнахах, кăнтăрла тĕлĕнче лаша утланнă та арăмне сăнама таврăннă. Картишне килсе кĕрсен ултавлă арăм карта урлă çăтăр-çатăр тутарса сиксе каçса тарнă. Упăшки чупса пынă та — тытма ĕлкĕреймен. Лешĕ маларах тарнă. Кĕлете пынă та арăмĕ çывăрнине курнă. «Ку чăнах, ман арăм çынпа пурăнать», — тенĕ. Упăшки арăмне:
— Çынпа пурăнан, хам куçпа куртăм, — тесе вăрçнă.
Çапла вĕсен иккĕшĕн ăшне те шуйттансем кĕнĕ. Шуйттансем татах ултавçă арăм патне пынă та каланă:
— Пире иккĕшĕн ăшне те кĕртрĕн, тата пирĕн епле пур халăха та хамăра Турă вырăнне пуççаптарас? — тенĕ. Ултавçă арăм каланă:
— Кайăр та çав çул хĕрринчи кулккана* кĕрсе ларăр. Чăваш патши иртсе пынă чух унăн лашине хăратса, павускине йăвантарса хăйне амантăр, — тенĕ.
Шуйттансем çав кулккана кайса чăваш патши иртессе кĕтсе ларнă. Чăваш патши пынă чух шуйттансем çавра çил пулса, лашине хăратса, павускине йăвантарса патшине амантнă. Патша нумайччен сывалаймасăр выртнă.
Патша патне ултавçă арăм пынă та сывлăх ыйтнă. Патша каланă:
— Çемьесем сывă-ха, хам сыв мар, нумайранпа асапланатăп, — тенĕ.
Ултавçă арăм каланă:
— Епле чирлерĕн? — тесе.
Патша лаши ăçта ĕрĕхсе аманнине каланă. Арăм патшана каланă:
— Эсĕ хăраса пăсăлнă, нимĕн те тумасан сывалаймăн та. Эпĕ сана сыватассине пĕлетĕп. Ман сăмаха итлесен çын пулăн. Эсĕ ху аманнă çĕре хăвăн пĕтĕм халăхна пуçтар. Килĕрен тăвар, кĕрпе, çу, пашалу илсе пыччăр. Унта мĕн тăвассине хамах пĕлетĕп, — тенĕ.
Патша пуçтарнă хăйĕн халăхне аманнă çĕре. Килсерен тăвар, кĕрпе, çу, пашалу, лаша, ĕне, вăкăр, сурăхсем, хур-кăвакал илсе пынă. Унтан ултавçă карчăк патшашăн та, халăхшăн та чӳкленĕ. Çавăнтан киремет пуçланса кайнă. Ултавçă арăм юмăçа тухнă.

## 516

Туканаш ятлă ял патĕнче ĕлĕкех пĕр шăтăк пулнă. Халĕ вăл пĕтĕмпех питĕрĕнсе çитнĕ. Çав шăтăк мĕнле пулнине ватă çынсем те курман, вĕсене ашшĕсем каласа панă. Çав шăтăк патĕнче тата ĕлĕкрех тӳрем вырăнччĕ тет. Туканаш ятлă ял пулнă тет унта. Пĕрре сасартăк çĕр айĕнчен уланă сасă

* Пĕчĕк вăрман, ката.

илтĕне пуçларĕ тет. Çĕр кисреннĕ пек пулчĕ тет. Вара çак Туканаш ялĕнчех çĕр айĕнчен пăр* хăпарма пуçланă тет: малтан пĕчĕккĕн, кайран — пысăкраххăн-пысăкраххăн. Шăтăкĕ те аслăланса кайрĕ тет. Туканаш ялне çăтсах янă вара.

Туканаш путнă çĕрте хăш-хăш чух çĕр уласах тăратчĕ тет. Çынсем каллех шăтать пулĕ тесе шăтăка парнесем пыра-пыра панă, чĕрĕ çынсене те тыта-тыта пăрахнă тет: малтан пĕлми ӳсĕртетчĕç тет, кайран шăтăка кайса пăрахатчĕç тет. Хайсем патĕнчех шăтăка ямалли çын тупаймасан тройкăпа катана кайса тытса килетчĕç тет. Пĕрре Лапракасси çынĕ нӳхрепе пытанса çăлăнса юлнă тет. Çулта-мĕнте çын курсан ăна лартса кайса янă. Кайран вара этеме пăрахма чарăнчĕç тет, выльăх-чĕрлĕх пăрахма пуçларĕç тет. Тата каярахпа тĕрлĕ пĕчĕк апат-çимĕç çеç пăрахма тытăннă. Çав шăтăка Туканаш шăтăкĕ теççĕ.

## 517

Турă ĕççĕр ларнă хушăра, ахаль лариччен кĕрĕк арки йăвала тенĕ пек, çĕртен тăм илчĕ тет те йăваласа ларчĕ тет. Йăваласан-йăваласан этем кĕлетки пулса тăчĕ тет. Этеме чун кĕртрĕ тет те сада ячĕ тет.

Садра выльăхла çӳрет тет этем. Калаçма пĕлмест, кулма аса та илмест тет. Турă шутларĕ-шутларĕ тет те: «Капла этеме кичем, чĕлхе парас», — терĕ тет. Турă вара этеме чĕлхе пачĕ тет.

## 518

Малтан çĕр çинче пур халăх та пĕр чĕлхепе калаçнă тет. Пурăнсан-пурăнсан пĕр чĕлхеллĕ пулса пĕлĕт çинчи пурнăçа улăхса курма шут тытнă тет. Унта улăхса курма питĕ çӳллĕ пусма тума тытăннă тет. Турă çакна курнă тет те хăраса ӳкнĕ тет. «Э-э, кусем капла ман пата та çитеççĕ вĕт», — тесе сехĕрленсе ӳкнĕ тет. Çапла шутланă хыççăн халăхсене тĕрлĕ чĕлхеллĕ тума шутланă тет. «Халăхсене тĕрлĕ чĕлхеллĕ тăвап та, халăхсем вара пĕр чĕлхе тупаймасăр пусма тăваймĕç», — тесе шутласа илнĕ тет вăл. Çапла вара халăхсене тĕрлĕ чĕлхеллĕ тунă тет те, лешсем пĕр чĕлхе тупаймасăр, пĕр-пĕрне ăнланман пирки пусма тăвайман тет, Турă патне те улăхса курайман тет.

## 519

Ĕлĕк-ĕлĕкех пĕр хĕре, Аринăн амăшне, икĕ каччă юратнă тет. Качча илме Аринăн ашшĕ илнĕ те, иккĕшĕ çын пурăнман çĕре çитсе вырнаçса пурăнма шутланă вĕсем. Нумай-нумай шывсем тăрăх анса сĕм вăрмана вырнаçса чăваш ăрăвне пуçарса янă тет. Хайхи тепĕр каччи те урăх хĕр çине авланса çаксем хыççăн йĕрлесе килнĕ тет те вĕсенчен инçех мар пытанса пурăннă тет. Пытанса пурăнакансене вĕсем екĕтесем тесе чĕннĕ тет. Чылай пурнарахпа çак екĕтесен пуçлăхне Емеле сунарçă вĕлерет тет те, унтан вĕсем çак икĕ ăрури хĕрсемпе каччăсем килĕштерсе никам пĕлмен-илтмен чĕлхе шутласа кăлараççĕ тет — хайхи чăваш чĕлхине. Хайхи екĕтесен сăнарĕ** — сарлака, курпун сăмсаллă, хура мăн куçлă, пĕчĕк чăпăрт туталлă, вăрăм мăйлă, çинçе ураллă, çивĕчĕ çынсем пулнă тет.

---

* Пăс.

** Сăн-пуçĕ.

## 520

Этем пӗрре ӳсӗр пуҫӗпе Шуйттана итленӗ те Ҫӳлти Туррӑн аслӑ ывӑлне Киремете вӗлерме килӗшнӗ. Ҫак усал ӗҫшӗн Турӑ ҫынсене пӗтӗм тӗнче тӑрӑх сапаласа янӑ, чӗлхисене хутӑштарса пӗтернӗ... Ҫавӑнтанпа ҫитмӗл ҫичӗ чӗлхе, тӗрлӗ йӑхсемпе ӑрусем тата пуянпа чухӑн пулса кайнӑ.

## 521

Хӑйсем пуҫланса кайнӑ чухне пур этем те пӗр чӗлхепе калаҫнӑ, кашни ҫын пӗр пек пурнӑҫпа, пурлӑхпа пурӑннӑ, пӗр тан пулнӑ. Анчах пурӑна киле ҫав тулӑх пурнӑҫа пула ҫынсем хушшинче каварлӑ шухӑш-туйӑм ҫуралнӑ: хӑш-пӗр ҫынсем хӑйсене теприсенчен лайӑхрах, пысӑкрах тесе шухӑшлама пуҫланӑ. Вӑхӑт нумаях иртмен — ҫынсем ӳсӗртекен ӗҫме-ҫиме (сӑра, сим пыл) туса ӗҫме-ҫиме тытӑннӑ. Каярахпа ҫав ӳсӗр ӗҫме-ҫимене хӑнӑхса ҫынсем вӑхӑта уссӑр ирттернӗ, пӗр-пӗрне кӗвӗҫме, пӗр-пӗринпе ҫапӑҫма, харкашма тытӑннӑ.

Ҫак иртӗхӗве кура тӑра Аслӑ Турӑ халӑха тытса тӑма ҫӳлти тӗнчере Кепепе пӗрле пурӑнакансенчен икӗ Турра — Пӳлӗхҫӗпе Пихампара — уйӑрса лартнӑ. Ҫав Турӑсене Аслӑ Турӑ ҫӗр ҫинче ҫуралакан этемсене шӑпа уйӑрса пама, вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрса яма хушнӑ. Ҫӗр ҫинче пурӑнакан этемсем хушшинче йӗркелӗх пултӑр тесе, ҫав йӗркелӗхе тытса пыма Аслӑ Турӑ ҫӗр ҫине тепӗр Турра янӑ, ӑна Ҫӗрти Патша тесе ят панӑ. Халӑхсем валли ҫитмӗл ҫичӗ чӗлхе туса панӑ.

## 522

Ку ӗҫ питӗ авал, темиҫе пин ҫул каялла пулса иртнӗ. Ун чухне тӗнчери пур халӑх та пӗр чӗлхепе калаҫнӑ. Пурӑнасса та вӗсем пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑннӑ, вӑрҫӑсем пулман. Ҫиме те вӗсем тӗрлӗ тымар ҫимӗҫсемпе, улмаҫырласемпе, сунара ҫӳресе тӗрлӗрен тискер кайӑк ашӗсемпе тӑранса пурӑннӑ.

Анчах пӗррехинче ҫӗр ҫине пысӑк инкек килнӗ. Темле хура чир (чума пулас) килсе ҫӗр ҫинче халӑха йӑхӗ-йӑхӗпе вӗлерсе хӑварнӑ. Вырӑнӗ-вырӑнӗ пӗр сывӑ ҫын та юлман. Ку вара ҫӗр ҫинчи халӑха пӗтӗмпех пӑлхантарнӑ. Вӗсем вара пӗрле кавар тунӑ та Турра вӗлерме шут тытнӑ. Анчах вӗсен ӗҫӗ пурнӑҫа кӗреймен. Турӑ халӑх хӑйне вӗлерме хатӗрленнине сиснӗ те халӑх ҫине инкек яра пуҫланӑ. Тӗрлӗрен чир ернипе ача-пӑча та, мӑн ҫынсем те пинӗ-пинӗпе вилнӗ. Сунара кайсан та вӗсем пысӑк кайӑксене тытайман. Ҫитменнине, вӑл ҫул улма-ҫырла та пит сахал пулнӑ. Вӑйсӑр халӑх чирпе асапланнисӗр пуҫне выҫӑпа аптранӑ. Кӑна Турӑ хӑйне вӗлерме шутланӑшӑн тӑвать пулӗ тесе сывӑ вӑйсӑр халӑх хӑйсен вырӑнӗсене пӑрахса тӗрлӗ ҫӗрелле саланнӑ. Чирлӗ ҫыннисене, утма пултарайманнисене унтах пӑраха-пӑраха хӑварнӑ. (Ун чухне пур ҫӗрте те сӗм вӑрман пулнӑ теҫҫӗ. Халӑх вара вӑрман уҫланкинчи шыв хӗррисенче ҫӗр пӳртсем туса пурӑннӑ тет.) Халӑх тарнӑ май хӑй чӗлхине те улӑштарнӑ. Тарнисем (вӗсем ушкӑнӑн-ушкӑнӑн тарнӑ) кашни ушкӑнах хӑйне чӗлхепе калаҫма пуҫланӑ. Вӑрман уҫланкисенче пурӑннӑ пирки вӗсен пӗр ушкӑнпа тепӗр ушкӑн хушшинче нимӗнле ҫыхӑну та пулман.

Ҫакӑнтан пуҫланса кайнӑ та ӗнтӗ халӑх тӗрлӗ чӗлхепе калаҫасси. Кӑна Турӑ халӑх пӗр чӗлхепе калаҫса кавар туса хӑйне вӗлересрен хӑраса тунӑ тет.

## Çын ĕмĕрĕ. Вăхăтпа вырăн. Несĕл пуçĕсемпе паттăрсем

*Этем тĕнче çаврăнăшĕпе этем ĕмĕрĕ çинчен яланах шухăшланă. Хăй шухăшĕсене хайла-халапра авалтан палăртса хăварнă. Пурнăçа пуринчен те хакла хунипех чăваш тĕнĕ пӳкле вилекенсене сивленĕ, йывăрлăхри çынна пулăшма хистенĕ, парăннă тăшмана шеллеме хушнă.*

*Этем çĕр çинче хăнара кăна пулнине халап-юмахра уççăнах каланă. Кĕске ĕмĕрпе килĕшмесĕр çын хăйĕн пурнăçне Леш тĕнчере малалла тăсма ĕмĕтленнĕ, çавăнпа тĕрĕс-тĕкел те ырă ĕçсемпе пурăннă çынсем Саркун çĕрĕнче те пархатарлă кун-çуллă пулнине каланă.*

*Пурнăçпа Вилĕм ыйтăвĕ халапсенче самай пысăк вырăн йышăнать. Несĕл пуçĕсем, Аслă Ваттисем, мухтавлă паттăрсем халăх ыйтсан чĕрĕлсе тăраççĕ. Вĕсем турăсем пекех — вилĕмсĕр. Туррисем хăйсем те Несĕл пуçĕсенченех пулса кайни çинчен калани пур. Аслă Турă кăна этемрен аслăрах: вăл маларах пулăннă, пурăннă, пултарнă.*

*Тăвать енлĕ тĕнчепе вĕç-хĕррисĕр Вăхăт çинчен каланă халапсем нумай мар. Вĕсен тĕслĕхĕсен «Шăпа кĕнекинчи» татăк-кĕсĕкĕсем мăчаварсен хучĕсем хушшинче пур. Вĕсем архивсене лекеймен. Паттăрсем çинчен каланă халапсенче вăхăт таппи витĕртерех сисĕнет. Паттăрсене пысăк пулăмсемпе, çапăçусемпе, халăх куçса кайнисемпе çыхăнтарнă. Улăп тата ытти паттăрсем çинчен хывнă халапсем хайлалла шухăшлавран хăвăрт куçса историлле халапсем пулса тăнă.*

*Халăхăн паттăрлăх халапĕсене (эпоса) кăларăмăн уйрăм кĕнекине кĕртнĕ май кунта хăш-пĕр тĕслĕхсене кăна панă.*

## Этем ĕмĕрĕ

### 523

Турă хăй патне кушака, лашана, йытта, упăтене тата çынна ĕмĕр валеçме чĕннĕ. Кашнинчен хăй мĕн чухлĕ пурăнас килнине ыйтнă тет.

— Мана вуннăпа çитет, кăмака çинче ытла ăшă, — тенĕ тет кушак.

— Мана çирĕмпе çитет, халь те пĕтĕм хуçалăха туртса ывăнатăп, — тенĕ тет лаша.

— Мана вуннăпа çитет, ĕмĕре шав çапкаланса çӳресех ирттеретĕп, — тет йытă.

— Эпĕ хисепсĕр, мана вуннăпа çитет, — тет упăте.

Тĕлĕнсе каять Турă: «Мĕнле капла питĕ сахал пурăнма кăмăлласçĕ? — тесе шухăшлать тет. — Икĕ уралли те сахал пурăнасшăн-и тен?»

— Эсĕ икĕ ураллă, ыттисем пек чăтаймастăн пулĕ. Сана пилĕк-ултă çулпа çитет, — тенĕ тет Турă çынна.

— Ан кул этемрен, эсĕ ху пилĕк-ултă çул кăна пурăн, — тенĕ тет тарăхса этем.

— Нумай пурăнас килсен сана йыттăнне те, кушакăнне те, лашанне те, упăтенне те парам, — тенĕ тет Турă çынна.

Этем хĕпĕртесе кулса янă тет те:

— Эпĕ вăл! — тенĕ тет.

Çапла этем вунă çула çитиччен кушак пурнăçĕпе, хайĕн çирĕм çулне

юрласа, хуйха-суйха пĕлмесĕр савăнать. Вăтăр çултан çирĕм çулне лаша пек хуçалăх тытасшăн тапаланать, тепĕр вунă çулне йытă пурнăçĕпе, юлашки кунĕсене упăте пурнăçĕпе ĕмĕрлет тет.

## 524

Малтанах Турă этемсене вилмелле мар тунă. Анчах нумай çул иртсен çĕр çинче ватăлса супнă çынсем пит йышланса кайнă. Вĕсем Турăран: «Вилĕм пар, вилĕм пар, Турă!» — тесе ыйта пуçланă. Çапла пĕрмай йăлăнса вĕсем Турра канлĕх те паман.

Турă вара çав пурăнса йăлăхнă çынсене хĕрхенсе вĕсене вилĕм пама килĕшнĕ. Вăл этемĕн чунне кăларса ăна вĕлерекен Пирĕшти Эсреле пултарнă. Турă Эсреле вилĕме кĕтекен ватă çынсене ĕнсине шăтарса вĕлерме хушнă, çамрăк этемсене тивме хушман. Эсрел вара ватă çынсене, пурăнас килменнисене, вĕлерме тытăннă. Вăл этемсен ĕнсине шăтарса чунĕсене ӳтрен кăларса илнĕ. Çавăнпа вилнĕ çынсен ĕнсисем пуçĕсене çирĕп тытми пулнă: пуçĕсем унталла та кунталла сулăннă.

Ватă çынсене вĕлерсе çӳренĕ вăхăтра Эсрел пĕр ват çын патне пынă. Эсрел унран:

— Вилес килмест-и санăн? — тесе ыйтнă.

Лешĕ:

— Çук, вилес килмест, — тенĕ, татах пурăнма Эсрелрен вăхăт ыйтнă.

Эсрелĕ ăна вăхăт панă. Вăхăчĕ тухсан Эсрел каллех пынă та çав старик патне:

— Халĕ ĕнтĕ мĕнле-ха, вилес килет-и? — тесе ыйтнă старикрен.

— Çук, — тенĕ лешĕ, — вилес килмест, тата пĕр вăхăт пурăнасчĕ, — тенĕ.

Эсрел каллех пурăнма вăхăт панă ват çынна. Анчах темиçе тапхăр иртсен те старикĕн вилес килмен. Юлашки хутĕнче вăл Эсреле çапла каланă:

— Тупăкăм хатĕр мар-ха. Эсĕ тепре килнĕ çĕре хатĕр пулĕ. Ун чухне вилĕп эппин, — тенĕ.

Эсрелĕ каллех кĕтме пулнă.

Старик чăнах та хупмалла, питĕрмелле тупăк тума панă. Каланă вăхăт иртсе те кайнă, ватă çыннăн çаплах вилесси килмен. Эсрел килнĕ те ыйтнă:

— Халĕ вилме хатĕр-и ĕнтĕ? — тенĕ.

Старик каланă:

— Эпĕ тупăк тутартăм, вăл хатĕр, анчах вăл маншăн пĕчĕккĕ пек туйăнать.

Эсрелĕ каланă:

— Пырать-çке, вырнаçăн, — тенĕ.

— Тăвăр тупăкра выртма кансĕр çав вăл, тепĕр тупăк тутармаллах пулать манăн, — тенĕ ватă çын.

Иккĕшĕ тавлашсан-тавлашсан старик Эсреле каланă:

— Эппин, ху выртса кăтарт, шăнăçма май пур-и? — тенĕ.

Лешĕ:

— Юрĕ, — тенĕ те тупăка лап! кĕрсе выртнă.

Старик тупăкне хуппине хупнă та çăраççипе питĕрсех лартнă. Унтан тупăка пĕр тарăн кӳлĕ хĕррине турттарса кайнă та кӳлле тӳнтерсе хăварнă. Çулсем татах иртнĕ. Этемсенчен вилекен пулман. Ватăлса супнă çын-

сем каллех нумайланса ҫитнĕ. Вĕсем: «Вилĕм! Вилĕм!» — тесе йăлăннă. Турă ватăсем йăнăшнине илтнĕ те Эсреле ҫиллене пуҫланă.

— Ăҫта сĕтĕрĕнсе ҫӳрет-ши Эсрел? — тесе ыйтнă вăл.

Пурте:

— Курман, — тенĕ.

Вара Турă мĕнпур этеме, вĕҫен кайăка, урăх чĕр чунсене пĕр вырăна чĕнсе пуҫтарнă та:

— Кам та пулин Эсреле курман-и? — тесе ыйтнă.

Пурте:

— Нумай пулать курманни, — тенĕ.

Турă ыйтнă:

— Чĕр чунсенчен пурте килнĕ-и кунта? — тенĕ.

— Уланкă пулă килмен, — тенĕ лешсем.

Чĕрĕп тата каланă:

— Эпĕ пĕр кӳлĕ патĕнчен иртсе килтĕм, ҫав кӳлĕре темĕн пирки шыв кăпăкланать, ҫавăнта выртмасть-ши Эсрел? — тенĕ.

Ҫав самантрах уланкă пырса кĕнĕ. Турă уланкăран ыйтнă:

— Мĕншĕн эсĕ вăхăтра ҫитеймерĕн? — тенĕ.

Уланкă каланă:

— Манăн ҫула картакан пысăк япала пулчĕ: кӳлĕре тимĕр арча выртать, вăл ҫула пӳлчĕ; эпĕ малалла каяймасăр аптраса тăтăм, йăлт хăшкăлтăм, сĕлехе те юха пуҫларĕ манăн, — тенĕ.

Чĕрĕп пур кайăк хушшинче пуринчен те чеерехҳи пулнă. Вăл каланă:

— Кӳлле кайса пăхас пулать, — тенĕ.

Вара кӳлле кайса пăхма йышăннă.

Чĕр чунсем ушкăнпа кӳлле пăхма кайнă. Кӳлĕре чăнах та тимĕр тупăк тупнă. Тупăка уҫса пăхнă та ун ăшĕнче Эсрел выртнине курнă, ăна тухма пулăшнă.

Эсрелĕ:

— Эсир кăшт тăхтанă пулсанах тăвăнса вилеттĕм эпĕ, — тенĕ.

Турă Эсрел кӳлле епле кĕрсе ӳкнине пĕлсен ҫапла каланă Эсрелне:

— Ӳлĕмрен ваттине-ҫамрăккине, вилес килнине, вилес килменнине ан уя: вилме вăхăт ҫитнине пурне те вĕлер. Камăн хăҫан вилмеллине эпĕ хам ҫын ҫуралнă чухнех ҫамки ҫине паллă туса кăтартса парăп, — тенĕ.

Ҫавăнтанпа вара этемсем, хăйсен ҫамкисем ҫинче Турă паллă тунă тăрăх, ватăлсан анчах мар, ҫамрăкла та, ачалла та виле пуҫланă. «Ҫамкана ҫырнинчен иртме ҫук» теесси ҫавăнтан тухнă.

Чĕрĕпе, вăл Эсреле тупма пулăшнăшăн, Турă йĕплĕ тумтир панă тата ăна хăй ирĕккĕн вилсе тепĕр хут чĕрĕлме ирĕк панă.

**525**

Пĕр старик пĕчченех пурăннă. Вăл ҫĕр те вунă ҫула ҫитнĕ, ҫавах та вилĕмĕ килмен. Пурнăҫĕ япăхланнăран япăхланса пынă.

Пĕрре старик, яланхи пекех, тилхепе илчĕ те вăрмана шанкă пуҫтарма тухса кайрĕ. Пуҫтарчĕ шанкă хăйне кирлĕ таран, тилхепепе ҫавăрса ҫыхрĕ, ҫурăм хыҫне хурса килелле килме утрĕ. Пынă ҫĕрте, вăйĕ кайса килнипе, ҫурăмĕ ҫинчи шанкă ҫыххи ҫĕре шуса ӳкрĕ. Старик шанки ҫине ларчĕ те хăйне хăй тарăхса ҫапла каларĕ:

— Мӗншӗн эпӗ ҫапла нушта курса пурнап-ши, ни чунӗ тухмасть! Ӑҫта-ши хуть Чунилли? — терӗ тет.

Ҫапла каласанах кун умне Чунилли тухса тӑчӗ тет те калать тет:

— Эпӗ Чунилли. Мӗншӗн чӗнтӗн мана? — тет.

Старик Чунилли тухса тӑрсан хӑра ӳкрӗ. «Акӑ ку чӑнах та ман чуна илме ҫиттӗр* ӗнтӗ», — тесе шухӑшласа илчӗ.

— Мӗн калас манӑн? Ҫак шанка киле йӑтса каймалла та пулӑшма сана чӗнтӗм, — терӗ.

— Пулӑшас, — терӗ Чунилли.

Старик шанкине Чуниллине йӑттарчӗ те, килне кайрӗҫ. Килне ҫитсен старике Чунилли калать:

— Пурнах ӗнтӗ, — тет.

Ку ҫапах та Чуниллине мӗнле те пулин аматасшӑн** хӑйне аматиччен.

Старик нимӗр пӗҫерчӗ. Ҫуллӑ турӗ. Ҫиме ларчӗҫ. Старик кашӑкпа хӗрринчен ӑсса пӗчӗккӗн ҫиет, Чуниллине ҫӑпалапа варринчен ӑсса ҫитерет.

— Эсӗ, — тет, — мана шанкӑ йӑтса килсе патӑн, сана пысӑкраххӑн та лайӑхрах ҫитермелле, — тет.

Чунилли хырӑмӗ выҫнипе пысӑккӑн та пысӑккӑн хыпа-хыпа ҫӑтать, ҫӑварӗ пӗтӗмпех пиҫсе ирӗлсе кайрӗ. Юлашки ҫӑпалине тути патне илсе пырсанах старик тӗпӗнчен так! тӗкрӗ. Вӗри нимӗр Чуниллин пичӗпе тутине те пӗҫертсе ячӗ.

Чунилли ҫисе тӑрансан старике калать:

— Манӑн халӗ Турӑ патне пӗлтерме кайса килмелле, — терӗ.

— Кайса кил эппин, — терӗ старик.

Чунилли Турӑ патне кайрӗ те калать:

— Старикӗнне чунне илеймерӗм. Вӗри нимӗр ҫитерсе ячӗ, ҫавӑнпа чунне илме лайӑх мар пек пулчӗ, — тет.

— Ухмах эсӗ, — терӗ Турӑ, — халех кай та чунне ил! — терӗ.

Чунилли старик патне каллех ҫитрӗ. Ҫитрӗ те калать:

— Сан чунна Турӑ илмех каласа ячӗ, халӗ илмесӗр тухса каймастӑп, — тет.

— Ман чуна илессе илӗн те, унчченх унӑ табак сӑмсана туртар-ха, — тесе туртма ларчӗ.

Старик сӑмсана табак туртнине Чунилли пӑхса ларчӗ-ларчӗ те калать:

— Мӗн вӑл, лайӑх-и? — тет.

— Пит лайӑх, — тет старик.

— Нуккӑ, мана та турттарса кӑтарт-ха, — терӗ Чунилли.

— Туртассу килсен ҫак табак тултарнӑ мӑйрака ӑшне кӗрсех турт эппин, — терӗ старик.

Чунилли табак туртма мӑйрака ӑшне кӗрсе кайрӗ. Кӗрсе кайсанах старик хупӑлчине питӗрсе илчӗ. Унтан сак айне кӗрсе тӑпра алтрӗ те мӑйрака ӑшне питӗрсе лартнӑ Чуниллине ҫавӑнта пӑрахрӗ. Ҫиелтен тӑпрапа витсе хучӗ. Ҫирӗп витӗнсе тӑма урипе таптарӗ. Чунилли ҫавӑнта ӗмӗрлӗхех путланчӗ.

Старик халӗ те пурнать тет. Вилесси ҫинчен нимӗн те шухӑшламасть тет. Халӗ те лайӑхах ӗҫлесе пурӑнать тет.

---

* Ҫитрӗ.

** Амантасшӑн.

## Паттăр несĕлсем

### 526

Меттей паттăр çинчен калакан сăмах пур. Меттей Турă патĕнче ĕçлесе пурăннă. Вăл лаша пăхнă, ака тунă, шыв турттарнă. Вучах чĕртсе вут хурасси те ун ĕçĕ пулнă.

Пĕринче Меттей пĕр ту хушăкĕнче çынсем шăнса, ĕнтĕркесе çĕр касçнине курнă. Вăл вĕсене шелленĕ те Турă кăвайтĕнчен пĕр вут пуççине аялалла персе панă. Çынсем вара хăйсем кăвайт чĕртнĕ, вучах тума вĕреннĕ. Вутпа çутатма, ăшăтма, пĕçерме пуçланă.

Хăйĕнчен ыйтмасăрах çынсене вут-кăвар панăшăн Турă Меттее çилленнĕ пулмалла. Вăл Меттее çынсем патне пурăнма янă.

### 527

Пирĕнтен тăватă çухрăмра Юрак ятлă ял вырнаçнă. Темпех илĕртмест вăл, ытти ялсем пекех. Вырăнĕ тӳрем мар: сăртсемпе çырмасем кăна, айлăмсенче чăвашсен çурчĕсем ларса тухнă. Çырма хĕррипе, пӳртсен çумĕпех, чăрăшсемпе хырсем ӳсеççĕ; ял патĕнче пысăк юман тункатисем тăртанса тăраççĕ, вĕсем кунта малтан чăтлăх пулнине çирĕплетеççĕ. Çак вырăнта темиçе пин çул каялла Юрак ятлă хĕр пурăнма пултарнă. Ун ячĕпех ял ятне панă. Ашшĕ-амăш кам пулнине, мĕн ĕçлесе пурăннине ку таранччен те никам та пĕлмест. Анчах шăнкăрав сасси пек сас-хура çӳрет: Юрак хутла пĕлнĕ, вăл вĕреннĕскер пулнă. Тен, пурнăç кичем пулнăран хăй ирĕкĕпе вăрçа кайнă, тен, пиччĕшĕсем ăна вăйпа панă — ун çинчен тĕплĕ паллă мар. Вăл вăрçа кайни, çар ертсе пыни паллă. Пĕррехинче Юрак вăрçа кайма хатĕрленнĕ. Князь хăйне пулăшма Юрак килни çинчен пĕлсен çав тери савăннă. Вара хăвăртрах тепĕр князĕ тăшманĕ патне элчĕсене çак сăмахсемпе янă: «Сана хирĕç кĕмĕл пуçлă, пăхăр хӳреллĕ çын килет!» Юрак вăрçа каяс кун вăл вăхăтри пек тумланнă: çĕнĕ çăпата сырнă; эрешлĕ, пиртен çĕленĕ вăрăм кĕпе тăхăннă; аллине кĕмĕл çĕрĕ тăхăннă, çĕрри халĕ те упранать; çурăмĕ çине епитрахиль евĕр «хӳре» уртса янă; пуçне тутарсен чепчикĕ евĕрлĕ шăрçасемпе тата укçасемпе илемлетнĕ тухья тăхăннă, анчах питĕ шел, çав хаклă япалана килте тытма хăраса Юракăн аякри тăванĕ, халĕ те çав ялтах пурăнакан Иустиния Петрова, пĕр псаломщике укçасăрах парса янă. Вăл каланă тăрăх, тухйи çинчи укçисем кĕмĕл чăмаккисем евĕр йăлтăркка пулнă. Вăрçăран таврăннă хыççăн та Юракăн тупра нумай пулнă. Япалисем паянхи кунччен тенĕ пекех упраннă, мĕншĕн тесен тăванĕсем тытма хăранă. Вăрçăран таврăнсан Юрак, ват хĕр, пĕтĕм тăванĕсемпе пиччĕшĕсене: «Пурте вилсе пĕтĕр!» — тесе ылханнă. Вăхăт сисĕнмесĕрех иртнĕ. Юрак вилнĕ пулсан та япалисем упраннă... Пĕринче çапла унăн тăванĕсенчен хăюлли тупăннă та çарине ватса кĕлете кĕнĕ. Вăл хăрамасăрах Юрак арчине уçнă та ĕмĕрлĕхе çывăрса кайнă. Арчинче çак япаласем пулнă: симĕс шапка, сарлака çанăллă вăрăм шурă тум, сăран сумка, темиçе теçетке пусма евĕр чĕркенĕ темле чĕлхепе çырнă хутсем — çаксене пурне те Иустиния Петрова арчипех пĕр пулă сутакан Аптăрахман тутара парса янă. Эпĕ Аптăрахманран Юрак хучĕсем çине мĕн çырнине ыйтнăччĕ, анчах вăл каламарĕ...

## 528

Çĕр амăшĕн хĕрĕ Чĕкеç ятлă пулнă. Ăна ачаллах Аслати ывăлне çураçнă. Анчах Чĕкеç ăна юратман. Вăл Услати паттăра юратнă. Услати паттăра курас тесе Чĕкеç час-часах хăй тĕнчинчен пирĕн тĕнчене хăпарса хĕр упраçсемпе вăйă вылянă.

Пĕрре çавăн пек чухне, тункаталла вылянă чух, Услати паттăр хăй тункатана юлсан Чĕкеçе хуса çитет те юратнипе çав хĕре ыталаса чуптăвать. Хĕрĕ тарăхнипе:

— Эс ман пурнăçа анчах мар, чăваша та пĕтертĕн, — тет те Услати паттăра çапса ярать, çавăнтах çухалать. Услати паттăр Чĕкеç тăнă вырăнта хупах курăкне çеç курать.

Хĕршĕн паттăр ниçта кайса кĕреймест. Çавăн чух урхамахĕ Çил çунат çапла калать:

— Ку хĕр çак ял хĕрĕ мар, Çĕр амăшĕн кĕçĕн хĕрĕ Чĕкеç пулать. Вăл ачаллах çураçнă хĕр, ун Аслати ывăлне качча каймалла. Эс ăна чуптурăн та ун пурнăçне татрăн, ăна намăс кĕпине тăхăнтартрăн.

Аслати турă виçĕ кунтан вăранать те пулас кинĕн питĕнче чуптунă вырăна курать. Турă чуптусан унтан йĕр юлмасть — вăл вилĕмсĕр. Çын — вилĕмлĕ чун; Турра чуптусан — унтан йĕр юлать. Аслати калать:

— Пулас кинĕн çĕр çинче еркĕнĕ пур. Каллех мана чăваш хур тăвать. Çичĕ ăрăвĕнчен тăвать ăрăвне пĕтертĕм, çавах мана сăтăр тăвать. Ăна тĕп тумалла, — тет.

Вăл чăваша тĕпĕпе пĕтерме пуçлать. Хĕре айăпа кĕртекен каччă хĕр ячĕпе ырă ĕç тусан турă çав хĕре çăлать, намăс кĕпине тăхăнма памасть. Услати Çил çуната калать:

— Саншăн ырă ĕç — тăван халăха çăласси. Ăна çăлас тесен сан Аслати вăраниччен тĕнче алăкне кĕле хумалла. Ун чух Аслати çĕре анаймасть, чăваша тĕп тăваймасть. Виçĕ кунччен çав алăка кĕлене питĕрмесен кунта ахăр самана тухать, чăваша тĕп тăвать. Малтанхи кун, тĕнче алăкне кĕле хума кайнă кун, мана саламатпа тирĕме çурмалла туртса çап, теприн-че чĕре кутне çитмелле çап, виççĕмĕшĕнче пуç мимине çитмелле çап, — тет.

Малтанхи кунне Услати çунат тирне çурмалла саламатпа туртса çапать те — Çил çуначĕ тĕнче алăкĕ патне тапса сикет, анчах вăл çур çула çеç çитет. Тепĕр кунне Услати Çил çунатне йыхăрать те тĕнче алăкне хупма кайнă чухне урхамахне саламачĕпе чĕре кутне тивмелле туртса çапать. Кунчехинче паттăр тĕнче алăкĕн кĕли патне çур шит кăна çитеймест. Виççĕмĕш кунне Çил çунатне саламатпа пуç мимине тивмелле туртса çапать. Урхамахĕ ун чух тĕнче алăкĕ патнех çитет. Услати паттăр Аслати вăраниччен тĕнче алăкне кĕле ярса питĕрме ĕлкĕрет.

Çав куннех вара Услати паттăр Шетмĕ юхан шывĕ хĕрринче Чĕкеçпе тĕл пулать те, иккĕшĕ пĕрлешеççĕ. Чĕкеç Услатине ывăл ача çуратса парать.

Чăвашран кайнă чухне Услати паттăр халăха çапла каласа хăварать:

— Чăваш паттăрĕ тĕнче алăкне уçсан эпĕ те сирĕнпе пулăп, — тет.

## 529

Ĕлĕк-авал чăваш хушшинче пĕр Темен ятлă паттăр пурăннă. Вăл чăвашсене хӳтĕлесе, чăваш халăхне тапăнакан ют халăхсене çĕнтерсе тăнă. Вăл пурăннă вăхăтра ытти халăхсем чăвашсене тапăнма та шикленнĕ. Аван пулнă чăваш халăхне Темен паттăр пурăннă вăхăтра.

Анчах этем ĕмĕр пурăнаймасть. Темен те пурăннă-пурăннă та кайран ватăлса вилнĕ. Хăй вилес умĕн вăл чăвашсене пухса вĕсене çапла каласа хăварнă:

— Эп вилсен мана лаша çине утлантарса, мĕнпур вăрçă хатĕрĕсене çакса пытарăр, эпĕ кирлĕ пулсан манăн тăпра патне пырса: «Темен, Темен!» — тесе чĕнĕр анчах — эпĕ тухăп, — тенĕ.

Темен вилсен ăна, хăй каланă пек, лаша çине утлантарса, мĕнпур вăрçă хатĕрĕсене çакса пытарнă. Унăн шăтăкĕ çине нумай тăпра купаласа тĕме туса хунă.

Темен вилнĕ. Анчах унăн ячĕ халăх асĕнче юлнă: унăн паттăрла ĕçĕсем çинчен ваттисем хăйсен ачисене кала-кала кăтартнă.

Пĕрре Теменĕн тăван ялĕнчи çамрăксем каçпа пухăнса тĕрлĕ япала çинчен калаçса ларнă. Калаçнă май вĕсем Темен çинчен те калаçа пуçланă. Вĕсем Темен: «Эпĕ кирлĕ пулсан манăн тăпра патне пырса ятпа чĕнĕр анчах — эпĕ тухăп», — тенĕ сăмахсене аса илнĕ. Çамрăксенчен пĕри каланă:

— Темене халĕ тăпри патне пырса чĕнсен чăнах тухĕ-ши вăл шăтăкран? — тенĕ.

Тепри тата каланă:

— Атьăр, атьăр чĕнсе пăхатпăр! — тенĕ.

Çамрăксем Темене чĕнме хăракансем те пулнă, анчах вĕсем хăйсене хăравçă тесе каласран шикленсе хирĕç каламан. Çапла çамрăксем пурте тăнă та Темен тĕми патне кайнă. Унта çитсен вĕсем кăшкăрса каланă:

— Темен! Темен! Тух! — тенĕ.

Çамрăксем çапла кăшкăрсанах Темен тĕмин тăпри сирĕлнĕ те шăтăкран юлан утлă çын, вăрçă хатĕрĕсене çакнăскер, сиксе тухнă.

Çамрăксем хăраса ÿкнĕ. Анчах Темен вĕсене тивмен. Вăл пит васкаса, лашине çил пек вĕçтерсе чăваш çĕрĕ йĕри-тавра çаврăннă. Тăшманĕсене тупмасăр вăл хăйне пытарнă вырăна таврăнса каллех хăй шăтăкне кĕрсе кайрĕ тет.

Çавăнтан кайран вăхăт нумай та иртмен — хай Темене шăтăкран чĕнсе кăларакан çамрăксем чирлесе вилме пуçланă. Çамрăксем хăйсем те шухăшланă: «Темен хăйне вырăнсăр хускатса чăрмантарнăшăн çилленчĕ пулмалла», — тенĕ. Ваттисем те каланă: «Темене кÿрентертĕмĕр», — тенĕ. Вара ял çыннисем Темен çиллине пусарас тесе Темене чÿк тунă. Çав султан пуçласа ку ялти тата таврари чăвашсем Темене кашни çулах чÿк тăва пуçланă. Çав йăлана Октябрь революцийĕ хыççăн тин пăрахнă.

**530**

Питтĕпел ялĕнче ĕлĕк Туйпаттăр ятлă пит пуян çын пурăннă. Пурте ăна хисепленĕ, пурте чысланă, вăл каланă сăмахсене пурте кăмăлтан итлесе-туса пынă. Пурăна киле çак Туйпаттăр питĕ хытă чирлерĕ тет. Çапла чирлесе, аташса выртнă вăхăтра вăл виçĕ хура лаша кÿлнĕ лав лупашкаран тухнине курнă. Ун çинче пĕр çын ларса пынине курнă. Çак лав Туйпаттăр патне шăнкăравпа çитсе чарăнса Туйпаттăртан çапла ыйтрĕ тет: «Ялти ватăсене хупала кăшт самайрах пулсан çынсене чĕнтер те мана çаплаçапла павускапа пĕр çын курăнчĕ, çав çын мана ват çынсенчен хăйне пурăнма хĕвел тухăçĕпе кăнтăр енне, вăрман хушшине пурăнма ыйтрĕ тесе кала çынсене, — тенĕ. — Çакă эпĕ каланине тусан эсĕ вара часах

чирĕнтен сывалăн», — тенĕ. Туйпаттăр вара ăнĕ кĕрсен ялти ватăсене пуçтарнă та: «Мана виç лашапа, павускапа пĕр çын курăнчĕ. Çав çын ялйыш çыннисенчен хĕвел тухăç енпе кăнтăр хушшине хăйне пурăнма вырăн ыйтрĕ, — тенĕ. — Вăл мана çапла кăмăл туса вырăн парсан эпĕ сана чирÿнтен сыватăп терĕ», — тенĕ. Ялти ватăсем канашласан: «Çав лавлă çынна вырăн памасан вăл пирĕн çине çилленсе темĕскер инкек-синкек, вут-кăвар, мур ярĕ, тырă-пулă пулми пулĕ, — тенĕ. — Çавăнпа вăл çынна вырăн памасăр кÿрентериччен вырăн парсан авантарах пуль», — тесе канашларĕç тет.

Тепĕр кун килсерен пашалу, юсман, пăтă пĕçерсе павускаллă çын ыйтнă вырăна карĕçĕ тет. Çав ыйтнă вырăна çитсен, илсе пынă апатсене шăлса тасатса хунă вырăна пуçтара-пуçтара, çĕлĕкĕсене хулпуççи айне хура-хура, ÿке-ÿке пуççапрĕçĕ тет: «Эй, çынсене ырăпа усал тăвакан Мăн Киремет, эсĕ Туйпаттăра юратса чирĕнчен сыватма пулнăскер, пире те ялйышпа хĕн-хурсăр пурăнма пар; ырлăх-сывлăх пар ача-пăчасене; вутран-кăвартан, вăрă-хурахран, инкек-синкекрен эсĕ сыхла!» — тенĕ.

## 531

Ĕлĕк-авал Сарă ятлă чăваш паттăр пулнă. Вăл пит вăйлă пулса, чăваш халăхне тапăнакан тăшмансемпе нумай çапăçса вĕсене çĕнтернĕ. Вăл чăваш çĕр-шывне хĕвел анăç енчен хÿтĕлесе тăнă. Çавăнпа вăл пурăнма та чăваш çĕрĕн тури хĕррине, Сăрă шывĕ çывăхне, вырнаçнă. Вăл Выла шывĕн вăрри патĕнче ял лартнă. Вăл яла ун ячĕпе Сарă ялĕ (кĕскен Сарьял) тее пуçланă.

Сарăн вăйĕ унăн çуначĕсенче пулнă: вăл çунатлă этем пулнă-мĕн. Анчах унăн çуначĕсене хăйĕнчен тата арăмĕнчен пуçне никам та курман, вăл çунатсене урăх çынсене кăтартма юраман. Сарă ватăла пуçласан унăн арăмĕ вилнĕ. Килте хĕрарăм ĕçĕсене хĕрĕ тăва пуçланă.

Пĕрре Сарă мунча кĕме кайнă. Хĕрне вăл каланă:

— Эсĕ мунчана никама та ан яр, ху та ан кĕр.

Ашшĕ мунчара ытла та нумай вăхăт иртгернине курсан хĕрĕ пăшăрхана пуçланă. Вăл шухăшланă: «Мĕншĕн-ха атте хăй патне никама та кĕртесшĕн мар пулчĕ? Вăл хăйне вĕлерме шухăш тытнă-ши?» — тенĕ.

Çапла шухăшланă та хĕр ашшĕ мунчаран мĕншĕн таврăнманнине пĕлме кайнă. Вăл мунча патне пырса итленĕ: мунчара шăпах пулнă. Хĕр мунчана уçса кĕнĕ. Курать: ашшĕ икĕ çунатне сарса выртать-мĕн — хăй çывăрса кайнă пулнă. Хĕрĕ ашшĕн çуначĕсене курсан тĕлĕнсе кайнă.

Çавă хушăра Сарă вăраннă та хĕрне курсан çунаттисене хул хушшинелле пуçтарса чикнĕ.

— Эх, хĕрĕм! Пĕтертĕн эс мана. Эпĕ сана хам пата кĕме хушманччĕ. Санăн манăн çунатăмсене курма юрамастчĕ, — тенĕ.

Çавăнтанпа Сарăн вăйĕ хăвăрт чакнă. Вăл вара хĕрĕ валли тивĕçлĕ каччă тупса ăна киле кĕртнĕ. Вилес вăхăт çитсен Сарă хĕрĕпе кĕрÿшне мĕнле пурăнмаллине вĕрентсе тата пехиллесе хăварнă.

## 532

Кĕлĕ тунă чох çичĕ паттăр салтака яланах асăнмалла. Çасам Выл олăхĕнчи Шорлăха потса вилнĕ. Вăсам Ишекрен тимĕр такапа чăваш кĕнекине илсе тохнă. Сорăм кирěметре полнă. Выл хыççăн ыттисам конталла

çаврăннă, Юнкă киреметре полнă, Чора-паттăрта, Сартонта полнă хыççăн Атăл орлă каçнă. Вăсам чăваш кĕнекипе тимĕр такана Амаксара илсе килнĕ.

533

Пирĕн таврара икĕ улăп пурăннă тет. Вĕсем сĕре вăйлă пулнă, йывăçсенчен те çўллĕ пулнă. Вĕсем пиччĕшпе шăллĕ пулнă. Пĕр пиччĕшĕ Атăл леш енчи йăлăмра пурăннă, тепри — ку енче, сăрт çинче пурăннă. Вара пĕрне пуртă кирлĕ пулсан тепри ăна Атăл урлă тепĕр енчен ывăтса панă. Çавăн пек вăйлă пулнă вĕсем. Чури паттăр тенĕ вĕсене. Чури паттăрсем карапсене те пуççапмасăр ирттермен тет. Хăйсем вара çынсене çаратса пурăннă.

534

Пинер ялĕнчи Турхан урамĕнче Ахплат текен вырăн пур. Ĕлĕк унта чул юпа ларатчĕ — çыруллă чул юпа. Халь чул юпи тĕпренсе саланса пĕтнĕ ĕнтĕ. Ĕлĕкрех унта укçа та пăрахатчĕç, нухратсем.

Пирĕн чăвашсем ĕлĕк тутарсене хырçă тўлесе пурăннă тет. Хыт мăшкăлланă чăвашсене, халăха пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ тет, хĕрсене, лашасене тыта-тыта кайнă тет.

Пĕрре çапла Шăхапул тутар çар пуçтарса килнĕ те яла çунтарса янă тет, хĕрсемпе çамрăксене чурана тытса кайнă тет. Ахплат ун чух ялта пулман.

Ахплат таврăнсан пирĕн чăвашсем каласа параççĕ ăна тутарсем тустарни çинчен. Ахплата Тутара кайма, хĕрсемпе çамрăксене хăтарса килме ўкĕтлеççĕ — тутарсене тавăрма.

Ахплат тухса каять юлан утпа. Тутарсене вĕлерсе пĕтерет, хулисене çунтарса ярать тутарсенне, хамăр халăха хăтарса килет. Тутарсем тытса тăнă çĕрсене чăвашсене калла валеçсе парать тет.

Вилсессĕн Ахплат ятлă улăпа асăнса чул юпа лартнă тет вара чăвашсем ун тăпри çине.

Ахплат вăл пит вăйлă пулнă тет. Ал армань пек чулсене Пинертен Энтрияльне (4—5 çухрăма) ним мар персе çитеретчĕ тет. Çавăнпа ĕнтĕ пĕчĕк ача çуралсан-тусан вара: «Ахплат пек вăйлă пул!» — теççĕ. Халь те калаççĕ, пил параççĕ. Çав Ахплат пит пысăк пулнă тет. Ĕлĕк çынсем хальхи пек мар, шултра пулнă тет. Пĕççисем ват юман вулли пек пысăк, платна пулнă тет. Ахплат пĕрре пусса ик-виç çухрăм ярса пуснă тет.

Пĕрре суха сухаланă тет те çăпата ăшне тăпра тулнă тет. Вара урине салтса шаккарĕ тет. Çав тăпраран, çăпатинчен тăкăннинчен, йĕтем пек тĕмеске пулса юлнă. Улăп тăпри теççĕ ăна. Теприне, Кĕçмер патĕнчине, Паттăр ури теççĕ. Иккĕшне те Ахплатран юлнă тетчĕç.

535

Тахçан авал Пăла шывĕн сулахай çыранĕнче ял пулнă. Ăна Сăкăт паттăр тытса тăнă. Авалхи Атăлçи Пăлхарстана тутар-монголсем тапăнса кĕрсессĕн çак яла тытса тăракан улпут пысăк çарпа тутар-монголсене хирĕç кĕрешме тытăннă. Анчах вăл тапăнса кĕнĕ тискер тăшмансене çĕнтерейсен, юлашкинчен вара çурçĕр енчи сĕм вăрмансене чакса кайнă та унта пу-

рăнма тытăннă. Хăйсем пурăнакан яла унти чăвашсем çав чаплă улпута хисеплесе Сăкăт Патăрьел тесе каланă. Кайран, чылай çул иртсессĕн, çак Сăкăт паттăр ачисем каялла куçса килнĕ те Пăла шывĕн сулахай çыранĕнче çĕнĕ ял пуçласа янă. Ăна вара Кĕçĕн Патăрьел теме тытăннă.

## 536

Тахçан-тахçан авалах, асатте каласа панăччĕ, чăвашсен Атăл ятлă патша пулнă. Пит вăйлă патша пулнă çав. Ун чухне чăвашсем темле тăшмана та пĕрмай çĕнтерсе пынă. Çак чăваш патши вăрçă вăрçма юратнă, пит хастар çапăçнă.

Çапла пĕрре вăйлă вăрçă пуçланнă. Çак чăваш патши, Атăл ĕнтĕ, чи вĕри çапăçакан çĕре кĕрсе карĕ хăйĕн лашипе. Лаши пит чаплăскер, шур урхамах. Тăшмансене чĕвен тăрса кукалет. Атăл патша хĕçпе касать. Ухăран пит вăйлă перес чăваш патшине, сăнăсем çомăр пек çăваç. А ку пирĕн чăваш патши хӳтлĕхпе пырать. Хӳтлĕхĕ çине сăнăсем, ухă йĕпписем, шăрт пик тăрăнса тулаççĕ, çĕклемелле мар. А патшана тивеймеç. Çĕклемелле мар пулса çитсен çиччĕн пырса улăштараç, хӳтлĕхне çиччĕн аран-аран çĕклеç. Çапла çичĕ хӳтлĕх чиперех улăштарчĕç. Саккăрмăшне улăштарнă чух пĕр сăнă Атăла чĕринченех лекрĕ. Атăл патша çантах вилсе карĕ. Çав патшана асăнса чăвашсем чи пысăк шыва Атăл тенĕ пулать.

## 537

Тискер тăшман тапăнса килсен Шу паттăр çарпа хирĕç тухнă та виç кун та виç каç чарăнмасăр çапăçнă. Никам та каялла чакман. Ӳпре пĕлĕчĕ пек хуп-хура тăракан тăшмана тытса чарнă. Йĕри-тавра лаша сиксе каçайми виле выртнă, патянпа ăсмалла юн юхнă. Пĕр çапăçура Шу паттăрăн лашине сăнăпа чиксе вĕлернĕ, хăйне вăтăр та виçĕ хут амантнă, кăкăрне хĕçпе шăтарнă. Вăл хăйне шыв варринчи утрав çине кайса хума хушнă.

Кайса хунă ăна утрав çинчи тĕмеске тăррине, пуç айне йĕнерне хунă. Йĕвен чĕлпĕрне тункатаран çыхнă. Йĕнер çине ешĕл хăмăш хурса панă. Тунката çумне сĕвенсе пăхса выртнă Шу паттăр хăйĕн пысăк çĕршывĕ çине.

Йĕкĕтсем çакăн хыççăн тăшмана тата хытăрах тустарма пуçланă. Тăшман чăтса тăрайман, чакма пуçланă. Шу паттăр нукерĕсем ăна урса кайса хăвалаиă. Тăшман шыв урлă каçса тарма шутланă. Каçас тенĕ çĕрте Шу паттăр выртакан тĕмеске юхса пынине курсан хăраса ӳкнĕ. Шу паттăр халь-халь сиксе тăрса вĕсене хăвалас пекех курăннă. Çухăра-çухăра чупнă тăшман салтакĕсем, анчах Шу паттăр çарĕнчен тарса хăтăлайман.

Шу паттăр аслă шыв варрипе анаталла юхса пынă, унăн çарĕ çыранпа васкамасăр анаталла аннă. Атăл çинчи Аслă ту патне çитсен тĕмескеллĕ утрав çырана пырса чарăннă. Нукерĕсем Шу паттăрне çӳллĕ ту çине йăтса хăпарнă, чаплăн пытарнă. Шывхан сăрчĕ теççĕ çав вырăна. Вăл халĕ те пур.

## Уйăх çинчи хĕр

### 538

Ĕлĕк уйăх аслăк çинче пулнă тет. Хĕрсем каçсерен пухăнса аслăк çинче уйăх çутипе савăнсах тĕрĕсем тĕрленĕ тет.

Пĕр хĕрарăм хăйĕн таса марне çынсем сисмен хушăра уйăх çине вăрттăн сĕрнĕ тет. Уйăх пăшăрханса кайнă та çӳлелле хăпарма тăнă тет. Кăна шыв ăсма каякан хĕр асăрханă тет. Вăл чупса пырса шăлса илнĕ тет. Уйăх витреллĕ хĕре юратса пăрахнипе хăй çумне туртса илнĕ тет. Уйăхпа хĕр пĕр талăк çӳлелле хăпарнă тет. Çавăнпа уйăх çинче шыв витрипе кĕвентеллĕ хĕр тăрать.

### 539

Ĕлĕк пĕр çын шыва аннă тет. Кунĕ сивĕ пулнă тет. Витрисемпе шывне ăссан картлă кĕвентипе витрисене йăтма тытăнчĕ тет. Çав кун питĕ сивĕ пулнă тет те, шывлă витрисем çавăнтах шăнса ларчĕçĕ тет. Çĕнĕ çын вара киле каяс тесе тапранма тытăнчĕ тет. Утма хăтланать тет те ниепле те хускалаймасть тет, ку çĕнĕ çын хăй те çавăнтах шăнса ларнă тет. Çапла вара çĕнĕ çын çавăнтах шăнса вилчĕ тет. Ку çын çылăхсăр пулнă тет те, Турă вăл качча кайсан çылăха кĕрĕ тесе шăнса вилмелле турĕ тет. Çав çĕнĕ çыннăн таса ӳтне çынсем ан илччĕр тесе Турă вара ăна шыв витрисемпех уйăх çине илчĕ тет.

Çав çĕнĕ çын халь те уйăх çинче витрисемпех тăрать теççĕ.

### 540

Уйăха ăна Хĕвелтен те пысăк теççĕ чăвашсем. Хĕвел çăкăр пысăкăш, Уйăх йĕтем пысăкăш теççĕ...

...Тĕттĕмленнĕ чух Уйăха Вупăр çиет теççĕ. Хĕрарăмсем хĕлле сӳс тӳсен киллине тӳнтерсе хăвараççĕ, тӳнтерсе хăвармасан килĕ çине кисĕп лартса Вупăр Уйăха çиме хăпарать теççĕ. Уйăх тулса çитсессĕн ун çинче пĕр хĕр картлă кĕвентепе шыв йăтса тăрать. «Ве-еç, пăх-ха Уйăх çине», — тесе кăтартаççĕ арăмсем ачисене. Ачисем: «Анне, вăл хĕр ăçтан унта хăпарайнă?» — теççĕ. Амăшĕсем: «Вăл унта хăпарман, хăй хăпарасшăн пулман, шыв илме кайнă та çырмана, çавăнтан, шыв ăссан, Уйăх туртса илнĕ», — теççĕ.

Чăвашсем ĕç пуçлама уйăх вăхăтне тиркесе тăраççĕ. Паранкă (картофель) лартма та çĕнĕ уйăхра пуçламаççĕ. Паранкă шур тымарлă пулать теççĕ. Алă чĕрнисене те çĕнĕ уйăхла касмаççĕ, чĕрне таврашĕнче ӳт чĕрре кĕрет теççĕ.

### 541

Пĕр чăваш ывăлне авлантарнă.

Çураçнă хĕрĕ таса та чипер, ырă кăмăллă пулнă. Туя хатĕрленнĕ май вăл çырмаран шыв йăтнă. Хĕлле шартлама сивĕ. Хĕр шывне ăсса илнĕ те витрине пăр çине лартнă. Витри шăнса ларнă. Теприне ăсса илнĕ те лартнă. Çĕклесе илнĕ çĕре хăй те шăнса ларнă.

Турă таса хĕре шелленĕ те Уйăх çине çĕклесе илнĕ. Вăл ăна качча парса арçынпа хутшăнтарасшăн пулман теççĕ.

* * *

Пĕр хĕрарǎмǎн ама çури хĕрĕ пулнǎ. Ǎна вǎл тем тĕрлĕ те нушалантарнǎ. Асап куртǎр тесе хĕрне çур çĕр варринче çырмана шыв ǎсма кǎлара-кǎлара янǎ.

Тулли уйǎхлǎ каç усрав хĕр, тǎван мар амǎшĕн тискерлĕхĕпе касǎлса çитнĕскер, Уйǎх çине пǎхса çапла каланǎ: «Эй, тулли Уйǎх! Ют аннепе тем тер асап чǎтса пурǎниччен сан пата вĕçсе пырǎттǎм. Ил мана ху патна!»

Уйǎх ǎна чǎнах та хǎй патне илнĕ. Уйǎх çине тинкерсе пǎхсан икĕ витрелле, кĕвентелле хĕр тǎнине асǎрхатпǎр.

## 542

Уйǎх çинчи хуранчǎка çĕнĕ çын шыва каять тенĕ ĕлĕк. Вǎл çĕнĕ çын уйǎх çине çапла лекнĕ тет. Ĕлĕк пĕр çĕнĕ çынна шыва кайсан Уйǎх вǎрласа кайнǎ тет, çавǎнпа вара вǎл халь те уйǎх çинче шыва кайнǎ пек курǎнать тенĕ ĕлĕк.

## 543

Уйǎх çинчен çапла калаççĕ: уйǎх çинче пĕр хĕрарǎм тǎрать, унǎн кирлĕ чух усǎ курма пĕр мǎшǎр витре, кĕвенте пур, вĕсене вǎл çĕр çинчен илсе улǎхнǎ теçĕ. Вǎл çапла пулнǎ имĕш.

Пĕр çĕнĕ çын çырмана шыва кайнǎ тет, тулли витресемпе хǎпарнǎ чух ывǎннипе çапла каланǎ тет:

— Уйǎх, Хĕвел! Уйǎх, Хĕвел! Мана, çĕнĕ çынна, хǎпартах! — тенĕ тет.

Вǎл хǎйне ǎçта хǎпартмаллине каламан тет те, Уйǎх ǎна хǎй патне хǎпартса илсе кайнǎ тет. Çав çĕнĕ çын халĕ те уйǎх çинче кĕвентепе витресемпех тǎрать тет. Çавǎнпах та пулĕ уйǎх чǎвашсене этем пичĕ-куçĕ пек те курǎнать. Çав пит-куç уйǎх çинчи çĕнĕ çыннǎн пичĕ-куçĕ теççĕ.

## 544

Пĕр хĕр шыв патне кайнǎ тет. Унта вǎл лачакана лакса ларнǎ. Вǎл лачакара асаплансан-асаплансан никам та çуккине кура Уйǎха пулǎшма чĕннĕ тет. Вара Уйǎх пынǎ та кǎна туртса кǎларнǎ. Çавǎнпа чǎвашсем çак хĕр халĕ те Уйǎх çинче шыв кĕвентипех тǎрать теççĕ.

## 545

Уйǎх çинче кĕвентепе витре йǎтнǎ хĕр тǎрать. Çав хĕр патша майрин алкине вǎрласа хĕвне чикнĕ тет те часрах кĕвенте йǎтса шыв патне кайма хатĕрленнĕ тет. Патша майри сиснĕ тет те:

— Ман алкана вǎрлакан алкипех Уйǎх чури пултǎрччĕ, — терĕ тет.

Патша майри ылханĕпе алка вǎрланǎ хĕр çав самантрах уйǎх çинелле хǎпарса кайрĕ тет. Хĕр паян кун та Уйǎх чури пулса шыв йǎтать тет.

## 546

Уйăх çинче кĕвентепе витре йăтнă хĕр тăрать. Çав хĕрĕн икĕ вăрă пиччĕш пулнă тет. Ăна çур çĕр тĕлĕнче, вăрăран таврăнсан, шыва янă тет. Çавăнпа хайхи хĕр макăрса каланă: «Мана Уйăх хăй патне илинччĕ», — тенĕ. Вара ăна Уйăх илнĕ.

## 547

Пĕр çыннăн пĕр хĕр пулнă. Хĕрĕ йăлхав пулнă. Амăшĕ хĕр çине çиленсе çур çĕрте шыв патне хăваласа янă. Хĕр шыв патне йĕрсе каять. Шыв патне çитсен ăна Усал илсе кайма тăрать. Хĕр: «Уйăх та пур, Хĕвел те пур, — тет, — Усала качча кайиччен илĕр мана!» — тет. Вара уна Турă витри-мĕнĕпех Уйăх патне илсе ăлăхтарать.

## 548

Амăшĕпе хĕрĕ порăннă тит. Ку хĕрĕн амăшĕ чирленĕ. Вăл хĕрне шыв пама ыйтнă. Хĕрĕ пăхнă та, шыв полман. Вăл часрах шыв патне кайнă. Ун чухне 12 сехет полнă. Шыв ăссанах ăна шапасем сырса илнĕ. Хĕр çӳлелле пăхнă та Уйăха курнă. Хăй патне илме ыйтнă. Уйăх ăна хăй патне илнĕ.

Чăнах та, халĕ уйăха сăнарах пăхсан кĕвентеллĕ хĕр шыв йăтса тăнă пек курăнать.

## 549

Ĕлĕк пĕр чухăн чăваш хĕрĕ каçпа кĕпе çума шыв хĕрне аннă тет. Çавăнта вăрă-хурахсем пынă тет, кĕписене туртса илнĕ тет, хăйне вăрласа кайма тапратнă тет. Тарать-тарать тет ку хĕр, тарса ӳкме май çук тет. Ниçта та кайма май çук пирки, нимĕн те тăвайман енне: «Уйăхçăм, тархасшăн, ил-ха мана хăв патна çав вăрă-хурахсенчен», — тенĕ тет. Уйăх итленĕ тет те хăй патне кĕвентепех илнĕ тет. Çавăнпа та çав хĕр ĕмĕрех çамрăк юлнă тет, çухалса кайнă çынсене çул кăтартса ярать тет çутатса.

## 550

Уйăх çинче пĕр хĕр пур теççĕ. Ку чăнах та çапла. Унăн историне тĕрлĕрен калаççĕ.

Ĕлĕк-авал пĕр арăмăн пĕр хĕр пулнă. Çав хĕрĕн амăшĕ ама çури пулнă. Вăл ăна пĕрмаях ятлаçнă. Хĕрĕ канма ларсан: «Паян канмалăх ĕçлемен, шуйттан хĕрĕ», — тесе хĕре шыв ăсма кăларса янă. Хĕрĕ вара тăван мар амăшĕ сине пăшăрханса: «Эй, Турă, кун пек асапланса пурăниччен мана çав уйăх çине кайса лартинччĕ», — тет. Турă вара çак хĕре хĕрхенсе шыв витрипех хăпартса янă тет. Çавăнпа халĕ те уйăх çинче хĕр кĕвенте йăтса тăрать.

## 551

Полнă ĕлĕк пĕр арăмăн хĕр. Амăшĕ Осалпала пĕр щот тытнă, Осала качча парас тенĕ. Çиччас хĕре çор çĕрте карянхи амăш* хусарат** шу

* Ама çури амăш.
** Хуса ярать.

патне. Каят хĕр шу патне макăрса. Шу патне çитсен, Осал исе каймалла хĕре: «Ойăх та пор, — тет, — Хĕвел те пор, — тет, — Осала качча кайиччен илĕр мана», — тет. Карян Торă хăпартать она ойăх патне витри-мĕнĕпе.

## 552

Ĕлĕк пĕр карчăкпа ватти пурăннă. Вĕсен пĕртен-пĕр хĕр пулнă, вĕсем хăйсен хĕрне пит юратнă. Анчах та пурнăç ялан пĕр пек пымасть, кĕтмен çĕртен карчăк вилет каять. Карчăкĕ вилнĕ хыççăн картăн ирĕксĕрех тепĕр хут авланма тивет. Çакăн пек ылмашусем хыççăн çак çамрăк хĕрĕн пурнăçĕ йывăрланма тытăнать. Ама çури амăшĕ хĕре питĕ юратмасть. Ăна вăл яланах асаплантарнă. Çак ама çури амăшĕ тухатмăш пулнă. Пĕррехинче тухатмăша кайсан ытти тухатмăшсене калать: «Эпĕ киле таврăнсан шыв ĕçес килчĕ тесе çĕр варринче çав хĕре шыв ăсма кăларса ярăп, вара эсир ăна тытса çисе ярăр», — тет. Лешсем килĕшеççĕ. Чăнах та, таврăнать те хĕре çĕр варринче шыв ăсма кăларса ярать. Çăлĕ аякра пулать. Хĕр шыв ăсса кĕвентепе хулпуççи урлă çакать те киле кайма тухать. Вара хайхи тухатмăшсен ушкăнĕсем тӳрех хĕр патнелле ыткăнаççĕ. Вара çак хĕре тахçантанпах ама çури асаплантарнине асăрхаса тăракан Уйăх тухатмăшсем ярса иличчен кĕвенти-витри-мĕнĕпех хĕре хăй патне туртса илет. Çав хĕр халĕ те пулин уйăх çинче хулпуççи çинче тулли витреллĕ кĕвентине çакса тăрать.

## 553

Уйăх çинче кĕвентеллĕ хĕр кӳлепине пурте курнă. Ĕлĕк-авал пĕр ама çури амăшĕпе ама çури хĕрĕ пурăннă. Ама çури хĕрĕ питĕ хитре пулнă тет, ама çури ăна юратман, пĕрмаях ĕçлеттернĕ тет. Пĕр шăтăк катка лартса панă тет те ама çури хĕрне шыв йăтса тултарма хушнă. Хĕр шыв йăтать, йăтать. Катки нимле те тулмасть. Хĕр ывăнсах çитет тет: «Эй, Уйăх, Уйăх, сана лайăх-и çӳлтен пăхма, илсем мана та хăв патна, мĕскĕне», — тенĕ тет. Вара Уйăх хĕре кĕвентипех хăй патне илнĕ тет.

## 554

Ĕлĕк-авал пĕр çемье пурăннă тет, ашшĕ, хĕрĕ тата ама çурийĕ. Ама çурийĕ хĕрне питĕ юратман тет. Мĕнле те пулин ăна вĕлересшĕн пулнă. Каçпа шыв патне алапа ячĕ тет. Хĕр шыв ăсать тет, шывĕ юхса тухать тет. Сала кайăк пырса ларчĕ тет те: «Шип-шип-шип», — тет. Хĕр ача макрамакра: «Эп сана ăнланмастăп çав», — тет. Сала кайăк ала тĕпне хăйăр ярса пачĕ тет. Хĕр ăсса кайрĕ тет шывне. Ама çури тарăхса кайрĕ тет те каллех ячĕ тет алапа шыв патне. Хĕр макăра пуçларĕ тет. Уйăх çакна курчĕ тет те хĕре шеллесе хăйĕн патне илсе хăпарса кайрĕ тет.

## 555

Ĕлĕкех пĕр вăрçăра хĕр пулнă тет. Вăл унта аманнисене çыхса янă тет, вĕсене апат çитернĕ тет, пăхнă тет.

Каçхине çапла ку хĕрĕн сурансене çума шыв пĕтет тет. Вăл кĕвенте

çакса шыв ăсма каять. Шывне витрипе ăсса, кĕвенте çине çакса кайма кăна тăрать тет, унăн умне тăшмансем тухса тăраççĕ тет. Вăл тăшман аллине çаклансассăн ăна каçарас çуккине лайăх пĕлет. Хĕтăлма та нимле май çук. Хĕр тем шыранăн пĕлĕт çине пăхса илнĕ. Каçхи тӳпере пĕр уйăх кăна ярăнса çӳренĕ. Хĕр тӳпери уйăха: «Уйăх, илсемччĕ пĕрех хут мана хăв патна», — тенĕ йăлăнса.

Çĕр çинче мĕн пулса иртнине куракан уйăх хĕрхеннĕ тет çак хĕре. Ăна кĕвенти-мĕнĕпех хăй патне туртса илнĕ тет. Çавăн хыççăн вăл вара уйăх çинчех пурăнма юлать тет.

## Хĕр кайăк пулни

### 556

Ĕлĕк пĕр ашшĕпе амăшĕн пĕртен-пĕр хĕр пулнă. Пĕрре çав хĕр кӳршĕ хĕрĕсемпе çырмана шыва кĕме кайнă. Хĕрсем шыва кĕчĕç те тухрĕç. Ку хĕр хăйĕн кĕпи патне тăхăнас тесе пычĕ. Пăхать: унăн кĕпи çинче пысăк Çĕлен вырта парать. Хĕр калать: «Ку манăн кĕпе, пар кĕпене», — тет. Ăна хирĕç Çĕлен этем чĕлхипе калать: «Кĕпӳне парăп, мана качча пырăн-и?» — тет. Хĕр вара ирĕксĕрех: «Пырăп», — терĕ. Çĕлен вара унăн кĕпи çинчен тăрса кайрĕ. Хĕр вара кĕпине тăхăнчĕ те юлташĕсемпе пĕрле килне таврăнчĕ.

Нумаях те иртмерĕ вăхăт — çĕленсем туйпа ку хĕре илме килчĕç. Хĕр пӳрте кĕрсе пытанчĕ. Çĕленсем ăна çапах та шыраса тупса хăйсемпе пĕрле малтан çырмана, унтан шыв ăшне илсе кайрĕç.

Виç-тăватă çул иртсен ку хĕр амăшĕсем патне хăнана кайма шухăш тытать. Çĕлен ăна кайса килме чармарĕ. Хĕр Çĕленрен: «Таврăнсан шыва мĕнле кĕрĕп эпĕ?» — тесе ыйтрĕ. Çĕленĕ каларĕ: «Эсĕ таврăнсан Уçăп! Уçăп! тесе кăшкăр анчах, эпĕ хирĕç тухăп», — терĕ.

Хĕр хăнана тухса кайрĕ. Çитрĕ ашшĕ-амăшĕ килне. Амăшĕсем хĕрĕ килнĕшĕн пит савăнчĕç, анчах вăл килмеллех мар — хăнана анчах килнине пĕлсен кӳреннĕ пек пулчĕç. Калаçса ларсан-ларсан хĕрĕ выртрĕ канма. Амăшĕ ыйтать хĕрĕнчен: «Сан патна пырас-мĕн тăвас пулсан шыв ăшне мĕнле кĕмелле пулĕ-ши?» — терĕ. Хĕрĕ каларĕ: «Шыв хĕрне çитсен Уçăп! Уçăп! тесе каламалла анчах, вара вăл хăех тухать», — терĕ. Унтан хĕрĕ çывăрса кайрĕ.

Хĕрĕ çывăрса кайсан амăшĕ пуртă илет те çĕлен пурăнакан шыв патне çитсе: «Уçăп! Уçăп!» — тесе кăшкăрать. Шывран çĕлен ишсе те тухать. Çĕлен тухсанах хĕр амăшĕ пурттипе çĕлене касрĕ те вĕлерчĕ, унтан килне таврăнчĕ. Хĕрĕ ыйхăран вăранчĕ те, темшĕн вăл салхуллă. Тăван кил-çурт, ашшĕ-амăшĕ ăна савăнтармаççĕ. Чĕри ăна çĕлен килне туртать. Вăл чăтаймарĕ, амăшне каларĕ. Амăшĕ шухăшланă: «Хĕре çĕлен тыткăнра тытса усранă, халĕ çĕлен çук ĕнтĕ, çавăнпа хĕр шыв патне çитĕ те çĕлен тухманнипе унăн килне таврăнаймĕ, вара хамăр килех таврăнĕ», — тенĕ.

Хĕрĕ шыв патне çитсен: «Уçăп! Уçăп!» — тесе чĕннĕ, анчах никам та тухман. Шыв та хĕп-хĕрлĕ пулнă. Ку хĕр çĕлене амăшĕ вĕлернине тавçăрса илнĕ пулмалла. Вăл амăшĕ патне таврăнман: кайăк пулнă та вĕçсе кайнă.

## 557

Икĕ хĕр пĕвере шыва кĕнĕ. Шывран тухсан пĕр хĕрĕн кĕписем ҫинче ҫĕлен выртать тет.

— Мана качча пыратăн пулсан кĕпӳне паратăп, — терĕ тет Ҫĕлен.

Хĕр нумайччен килĕшмесĕр тăчĕ тет. Юлашкинчен:

— Пырăп эппин, — терĕ тет.

Вара Ҫĕлен туйипа хăш кун пымаллине калăртса хунă. Ҫĕлен туйĕ пырас кун хĕрĕ килтех ларнă, ун ҫинчен вăл амăшĕсене пĕлтермен. Вара ку хĕрсем патне тĕрлĕ ҫĕлен кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех пырса тулчĕ тет. Хĕрĕн амăшĕсем алăкĕсене питĕрсе лартрĕҫ тет. Ҫĕленĕсем чӳречесем, алăксем тăрăх ҫакăнаҫҫĕ тет. Вара хĕрĕ амăшĕсене ҫĕленсем мĕншĕн килни ҫинчен пĕлтерчĕ тет. Ҫав кун вара Ҫĕлен хĕре качча илсе кайнă.

Ҫавăн хыҫҫăн Ҫĕленпе хĕр ачаллă-пăчаллă пулнă. Ачисем пĕри хĕр, тепри ывăл пулнă. Вара вăл ҫав ачасене ҫавăтса амăшĕсем патне кайнă. Амăшĕ пурин ҫинчен те ыйтса пĕлнĕ.

— Эсĕ шыв айне мĕнле анатăн? — тесе ыйтсан, хĕрĕ:

— Хĕветĕр, тух тетĕп те, ҫĕлен тухса илсе кĕрет, — терĕ тет.

Ҫавăн хыҫҫăн хĕрĕн амăшĕ хĕрне ним пĕлтермесĕрех шыв хĕрне пынă та:

— Хĕветĕр, тух! — тесе кăшкăрнă.

Ҫĕлен шыв хĕрне тухсанах унăнне пуҫне касса татнă. Хĕрĕ ачисемпе килне тухса кайнă. Шыв хĕрне ҫитсен вăл виҫĕ хут:

— Хĕветĕр, тух! — тесе кăшкăрнă.

Ҫĕленĕ тухман. Вара вăл шыв хĕп-хĕрлĕ пулнине курнă. Шыв ҫинче ҫĕлен пуҫĕ ярăнса ҫӳрет тет. Хĕрĕ ҫавăнтах йĕрсе ячĕ тет.

— Эх, ачамсем, пирĕн пурнăҫа пĕтерчĕҫ, — тесе макăрать тет.

Ҫавăн хыҫҫăн ывăл ачине:

— Эсĕ пăрчкан пулса вĕҫсе кай. — Хĕр ачине: — Эсĕ чĕкеҫ пулса вĕҫсе кай, — терĕ тет. — Хам куккук пулса вĕҫсе каятăп, — терĕ тет.

Ҫавăн хыҫҫăн вара вĕсем кайăксем пулса вĕҫсе кайрĕҫ тет. Чĕкеҫ вара яланах хăйĕн ашшĕне аса илсе шыва кĕрсе тухать. Куккука хăй амăшне ҫĕленĕ ҫинчен каланă вăхăт ҫитсен ҫăварне тимĕр кăшăлпа кăшăлласа авăтма чараҫҫĕ тет.

## 558

Ку ĕҫ ĕлĕкхи вăхăтра тинĕс хĕрринче пĕр чухăн ялта пулса иртнĕ. Унта пĕр тăлăх чухăн арăм пурăннă. Упăшкине вăрҫăра тăшмансем вĕлернĕ. Ҫав тăлăх арăма пурте Наҫтук аппа тесе чĕннĕ. Наҫтук аппан пĕр 15—16 ҫулхи хĕрĕ пулнă. Ăна Маша тесе чĕннĕ. Маша питĕ ĕҫчен пулнă, амăшне те, кӳршĕсене те ялан пулăшнă, ҫавăнпа ăна пурте юратнă, хисепленĕ.

Пĕрре ҫуллахи шăрăх кун Маша юлташĕсемпе тинĕс хĕррине шыва кĕме кайнă. Хĕр ачасем пурте кĕписене хывса ҫыран хĕррине хунă, ăшă шывра выляннă, чăмнă, ҫăваннă. Вара пурте шывран тухса кĕписене тăхăнса киле кайма тухнă. Маша кĕпи патне пырать — ку мĕн: унăн кĕпи ҫинче пысăк хура ҫĕлен выртать. Вăл Машăна ҫын сассипе ҫапла каланă:

— Мана качча пыран пулсан кĕпӳне парăп, — тенĕ.

Маша нимĕн калама аптăраса:

— Пыратăп, — тесе каласа хунă.

Çĕленĕ çавăнтах Маша кĕпи çинчен анса тинĕсе кĕрсе кайнă. Kaç пулнă, Машăпа амăшĕ те çыврăма выртас тенĕ. Сасартăк шăв-шав илтĕнсе кайнă. Çĕленсен туйĕ Машăсен çенĕкне ватса кĕнĕ. Пӳрте алăка е кантăка ватсах кĕрсе тулнă. Маша макăра-макăра пĕве патĕнче мĕн пулнине каласа панă. Çĕленсем Машăна çиламах çавăтса илсе тухса кайнă. Наçтук аппа нимĕн тума пĕлмесĕр макăрса юлнă.

Çавăнтан Маша çинчен никам та нимĕн те пĕлмен. Тăвата çул та иртсе кайнă. Пĕр çуллахи ăшă каç Наçтук аппа патне Маша икĕ ачипе пынă. Аслă ачийĕ, ывăл, виççĕре пулнă, кĕçĕнни иккĕре пулнă. Наçтук вĕсем ырă-сывă пулнăшăн питĕ савăннă. Машăран ачисем çинчен, мăшри çинчен, мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлнĕ. Маша:

— Эпĕ ыран ирех каятăп, сана курма анчах килтĕм, — тенĕ. — Манăн пурнăç питĕ лайăх, манăн упăшка Уçăп ятлă,— тенĕ. — Эпĕ тинĕс хĕррине пыратăп та: «Уçăп! Уçăп!» — тесе кăшкăратăп, вара Уçăп тухать те илсе каять мана, — тенĕ.

Амăшĕн хăйĕн хĕрне те, çав тери илемлĕ ачисене те çĕлен патне ярас килмен. Наçтук аппа Машăсем çывăрсан çивĕч çава илнĕ те тинĕс хĕрне кайнă.

— Уçăп! Уçăп! — тесе кăшкăрнă.

Кĕçех тинĕс хĕррине пысăк хура çĕлен ишсе тухнă. Наçтук аппа çĕлене татăк-татăк касса пăрахнă.

Ирхине Маша хĕвелпе пĕрлех тăнă те ачисене йăтса тинĕс хĕррине пынă. Темĕн чухлĕ кăшкăрсан та Уçăп тухман. Вара Маша Уçăпăн виллине курнă те йĕрсе янă. Ачисем те ашшĕшĕн хурланса макăрнă тет.

Вара Маша ывăл ачине:

— Эсĕ, ывăлăм, шăпчăк пулса вĕçсе кай, ирпе-каçпа илемлĕ юрласа çынсене савăнтар, — тенĕ. Хĕрне: — Эсĕ чĕкеç пулса вĕçсе кай та пӳртсен карнисĕ çине, лупас карнисĕ çине ларса юрласа савăнтар, — тенĕ. — Хам куккук пулăп, мăшăрăм çуккишĕн хурланса авăтса çӳрĕп, хамăн хурлăхлă сасăпа çынсене те хурлантарăп, — тенĕ тет.

Вара виççĕшĕ виçĕ çĕре вĕçсе кайрĕç тет.

# V. ĂС-ПУРЛĂХПА ХУÇАЛĂХ

*Этем ăсĕ-тăнĕпе ĕç-хĕл ăсталăхĕ мĕнле аталанса пыни çинчен калакан авалхи халапсем йышлах мар. Пуррисем те вак-тĕвеккĕн, тĕпренчĕксем майлă упранса юлнă. Тĕрлĕ ятсем, йăла-йĕркесем çырăнса юлнă кĕске тĕслĕхсенче тăтăшах тĕл пулаççĕ, анчах вĕсен тулли тексчĕсем упранса юлман. Çакна Н.И.Ашмарин хатĕрленĕ «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинчи» нумай сăмахсемпе ятсемех кăтартса параççĕ.*

*Этем алă ăсталăхне, çĕр, вăрман, шыв пулăхне, хуçалăх ĕçне хăнăхса пынине кăтартакан халапсенче ытти халăхсен сăмахлăхĕнче тĕл пулман тĕслĕхсем курăнаççĕ. Чăваш хайли-хачмакĕнче пĕтĕм çутă тĕнче çынна тĕрлĕ ĕçсене вĕрентет: Чĕрĕп çĕре сухаласа-акаласа тăма, Вутăш пир-авăр хатĕрлесе тĕртме, Шуйттан сăра-шерпет юхтарма, Пихампар сĕт-турăх тирпейлеме, Ашапатман им-юм вĕретме, Кăварпи çăкăр пĕçерме, Утлас кустăрма ăстала-ма, Эсрел сĕрме купăс тума тата ыттине хăтласа кăларма пулăшаççĕ.*

*Турă карап тума хистет, Шуйттанĕ ăна шăтарма хушать. Шăшийĕ кăшласа шăтарать те, çĕлен ăна питĕрсе хурать. Аслати асамат кĕперĕ карса парать те, Типшарĕ ăна аркатса хăварать... Этеме çав кĕрешӳре çĕнтерсе пыма сĕм парать хайла-халап.*

*Ăс-пурлăх (культура) халапĕсемпе танлаштарсан ăс-хакăл (духовность) хайлисем ытларах упранса юлнă. Çырулăхпа кĕнеке, юрăпа ташă, тĕнпе тĕшмĕш, тĕрĕпе эреш, пурнăçпа вилĕм, тăнпа туйăм, телейпе синкер, яшлăхпа ватлăх тата ытти нумай пулăм-пĕлĕм тавра шухăшланă этемлĕх. Вĕсем чăваш халапĕсенче хăйсен йĕрне хăварса пынă. Уйрăмах тĕн вĕрентĕвĕнче аваллăх палли çирĕп. «Малтан, тĕнче тытăнсанах, çын нумай пулман — çитмĕл те çиччĕ кăна. Çавăн чухне Ярхункке маçак чăваш тĕнне ыйтса илнĕ. Унччен урăх тĕн пĕрре те пулман. Тутарсем те, ыттисем те ĕлĕк чăваш тĕнĕпе пурăннă, кайран аташса кайса хăйсемле йĕркесем туса хунă»,— тенĕ А.Липатов çырса илнĕ халапра. Чăваш тĕнне мала кăларса каланă халапсене тĕрлĕ çĕрте сахал мар çырса илнĕ. Çакă халăх тĕнĕ ава-лах вăйлă пулнине, хăй историне хисеплесе тăнине пĕлтерет.*

## Ĕçе вĕренни

### 559

Тĕнчене пултарсан Турă пур тискер кайăксемпе вĕçен кайăксене чĕнтернĕ тет те çĕр ĕçлемелли меслет тупма хушнă тет. Тискер кайăксем-пе вĕçен кайăксем пурте пухăннă. Пĕр чĕрĕп çеç кая юлса пынă тет. Ăна чĕнсе килме кушак кайăкне хушса янă. Пухăва пырса кĕнĕ чухне чĕрĕп

такăннă ўкнĕ тет. Пухурисем хайхинчен кулма пуçланă. Чĕрĕпĕ çилленнипе тухнă та кайнă. Çĕр ĕçлеме пĕлекенни унсăр пуçне никам та пулман. Вара çĕр ĕçлемеллине вĕренсе килме кун патне сыснана янă. Сысна чĕрĕп патĕнчен таврăнсан çапла каласа панă тет:

— Чĕрĕп: «Манран кулаççĕ, хăйсем нимĕн те пĕлмеççĕ, — тесе каларĕ. — Çĕр ĕçлеме суха пуçĕ, сўре тата урапа кирлĕ; çĕре сухаласан тата сўресен — акмалла; тырри пулса çитсессĕн — çурлапа вырмалла; авăн çапсассăн — армана кайса авăртмалла; унтан çăкăр пĕçермелле; çапла ĕмĕр тăршшĕпе туса тăмалла», — терĕ тет.

Чĕрĕп патне çўресе вăхăт нумай иртернĕшĕн пухурисем сыснана питĕ хытă ятланă. Çавăнтанпа вара чĕрĕп çилленнипе кушак кайăксене тытса çиме пуçланă, сыснин чĕрĕпсене, чирлĕ путексене тата этем виллине çимелле пулса тăнă. Унсăр пуçне тата вăл, Турăран ылхан илнĕскер, виçĕ çулта та пĕрре çеç хĕвел курать.

## 560

Турă акапуç туса лартнă тет, пĕтĕм тимĕртен. Пур кайăк пухăннă. Чĕрĕп кайран тин çитнĕ тет. Алăкран кĕнĕ чух ўкнĕ тет, ытти кайăксем кулчĕç тет. Чĕрĕп çилленсе тухса кайрĕ тет, мăкăр-мăкăр мăкăртатать тет. Турă: «Кайса итлĕр-ха, мĕн калать», — терĕ тет. «Хăйсем кулаççĕ! Акапуçне пĕтĕм тимĕртен тунă, унпа кам ĕçлес? Ăна йывăçран тумалла, касаканнине тимĕртен тумалла», — тесе калать тет Чĕрĕп.

## 561

Ĕлĕк, тĕнче пулсан, çынсем ака тума пĕлмен. Епле ака тăвасси çинчен ăс тупма мĕнпур тĕнчери çынсем пухăннă — нихăшĕ те тупайман.

Тата çĕр çинчи чунлă япаласене пуçтарнă: упа та чĕрĕп пулман. Вăл чунлă япаласем те пĕлмен ака тума.

Унта чĕрĕпе чĕнтернĕ. Чĕрĕп пынă та чĕркенсе выртнă. Этемсем чĕрĕпрен кулнă:

— Çав ака тума пĕлмелле-и, унăн пуçĕ-кучĕ те, алли-ури те çук, — тесе.

Чĕрĕп мăшкăлласа кулнăран унтан пăрахса кайнă. Кайнă чухне çул çинче мăрăлтатса пынă:

— Хăйсем кулаççĕ манран, ака тума пĕлмеççĕ. Акана тума ултă лаша кирлĕ, аки пуçне йывăçран тумалла, тимĕртен шăртне, тĕренне тумалла. Унтан сўре туса, тимĕр шăл çапса, тыррине аксан сўремелле, — тесе пынă.

Епле акапуç туса, епле сўре туса, тырă акса сўресси çинчен вăл каланине пĕр çын итлесе пынă. Çав этем халăха каланă та, çав хушнипе ака тума вĕреннĕ.

## 562

Ĕлĕк суха тума пĕлмен тет. «Мĕнле акмалла-ши ку тырра?» — тесе хуйхăрнă тет. Пĕри шухăшланă та каланă:

— Атьăр пухар пĕтĕмпе: çĕртен кусана, çўлтен вĕçене — кам та пулин пĕлмест-ши сухапуçне тума?

Вара пуҫтарнǎ пĕтĕм кайǎка, пĕтĕм япалана, анчах пĕр чĕрĕпе чĕнме астуман. Пуринчен те ыйтнǎ тет, анчах никам та пĕлмен тет. Вара пĕри астуса каларĕ тет:

— Ара, пирĕн чĕрĕп юлнǎ вĕт, атьǎр-ха ǎна кайса чĕнер.

Чĕрĕпе кайса чĕнчĕҫ тет. Чĕрĕп утса пынǎ чух тǎрт! пǎсарса ячĕ тет. Пĕтĕм халǎх кулса ячĕ тет. Чĕрĕп уншǎн ҫилленчĕ тет те каялла ҫаврǎнса утрĕ тет. Хǎй мǎкǎртатса пырать тет. Унǎн тǎрринчен ǎмǎрт кайǎк вĕҫсе пынǎ, вǎл мĕн каланисене илтнĕ. Чĕрĕп каласа пырать тет:

— Хǎйсем нимĕн те пĕлмеҫҫĕ, ҫаплах манран кулаҫҫĕ. Ǎна икĕ турта тумалла, варрине урлǎ патак хумалла, кукǎр йывǎҫ ҫыпǎҫтармалла, кукǎр вĕҫне тимĕр тǎхǎнтармалла. Кукǎрне пǎявпа ҫыхмалла, пǎявĕнчен калек ҫыхмалла, вара лаша кӳлсен тыткǎчǎран тытса пымалла. Лаши туртать, сухи сухаласа пырать.

Мǎкǎртатса чарǎнсан вара ǎмǎрт кайǎк вĕҫсе пырса каларĕ тет. Ҫавǎнтан кайран суха тума вĕреннĕ тет, тырǎ акса тырǎ тума вĕреннĕ тет халǎх.

## 563

Малтанхи этемсем йывǎҫ-курǎк ҫимĕҫĕсемпе тǎранса пурǎннǎ. Этем йǎхĕ ĕрчесе пынǎ май йывǎҫ-курǎк ҫимĕҫĕсем пур этеме те тǎрантарайми пулнǎ. Ҫавǎнпа этемсем вĕҫен кайǎксен тата тǎват уrallǎ кайǎксен ашне, юнне ҫиме вĕреннĕ. Этемсем пайтах чĕр чуна (пулǎсене, вĕҫен кайǎксене, тǎват уrallǎ кайǎксене) тытса ҫие пуҫланǎ. Чĕр чунсемшĕн этем чи хǎрушǎ тискер кайǎк пулса тǎнǎ. Ҫавǎнпа вĕсем Турра:

— Пирĕн хута кĕрех, этеме пире тытма чарах, — тесе йǎлǎннǎ.

Турǎ шухǎшланǎ-шухǎшланǎ та ҫакна шухǎшласа тупнǎ:

— Этем ашпа юн ан ҫитĕр тесен ǎна йывǎҫ-курǎк ҫимĕҫне ҫителĕклĕ тума, акса ӳстерме вĕрентес пулать. Анчах кам пĕлĕ, кам вĕрентĕ ҫав ĕҫе? — Турǎ шухǎшланǎ. — Чĕр чунсем хǎйсем тупчǎр мелне, — тенĕ.

Турǎ пур чĕр чунсене пĕр ҫĕре пухǎнма хушнǎ. Пурте пекех пуҫтарǎнсан Турǎ кайǎксене этем валли ҫĕр ĕҫлесе ҫимĕҫ тупмалли мел шухǎшласа кǎларма хушнǎ. Анчах пухǎннǎ чĕр чунсенчен нихǎшĕ те ҫав меле шухǎшласа тупма пултарайман. Турǎ ыйтнǎ:

— Пухǎва килмен кайǎк кам та пулин ҫук-и? — тенĕ.

— Пур, чĕрĕп килмен, — тенĕ ǎна хирĕҫ.

Лап чĕрĕпрен ыйтмалла пулнǎ ҫав каланǎ мел ҫинчен, мĕншĕн тесен чĕрĕп ǎслǎ кайǎк, нумай япалана пĕлекен кайǎк пулнǎ. Пухǎва вǎл темскер тытса тǎнǎ пирки час ҫитеймен: кая юлнǎ. Ǎна чĕнме кушак кайǎка (шǎшие) янǎ. Чĕрĕп час ҫитнĕ. Анчах вǎл пуху пӳлĕмне кĕнĕ чух васканипе такǎннǎ та ӳкнĕ. Пухури кайǎксем ахǎлтатса кулса янǎ. Кулни чĕрĕпе кӳрентернĕ. Вǎл каялла ҫаврǎннǎ та тухса кайнǎ. Анчах ҫĕре мĕнле ĕҫлесе мĕнле ҫǎкǎр тумаллине вǎл кǎна пĕлнĕ. Пуху ун хыҫҫǎн сыснана чуптарнǎ. Сыснине чĕрĕп мĕн каланине итлесе килме хушнǎ.

Сысна чĕрĕпе хǎваласа ҫитнĕ те лешĕ мĕн каланине хǎлхисене тǎратсах итленĕ. Таврǎнсан вǎл чĕрĕп сǎмаххисене пĕтĕм пуху умĕнче каласа кǎтартнǎ. Чĕрĕп ҫапла каланǎ-мĕн:

— Манран кулаҫҫĕ, хǎйсем нимĕн те пĕлмеҫҫĕ. Апат-ҫимĕҫне акса тǎвас тесен суха пуҫĕ, сӳре, урапа тата лаша кирлĕ. Малтан лашине суха пуҫне кӳлсе тǎприне чĕрес (сухалас) пулать, ун хыҫҫǎн сӳрес пулать,

унтан тырă вăрлăхне акса каллех сӳрес пулать, тырри ӳссе пулса çитсен ăна çурлапа вырас пулать, çавăн хыççăн авăнра типĕтсе йĕтем çинче çапас пулать, унтан тыррине тасатас пулать те арманпа авăртса çăнăх, çăнăхран чуста туса ăна кăмакара пĕçерес пулать. Çавă вара çăкăр пулать. Çăкăр этемĕн апачĕ-çимĕçĕ пулать, унпа вăл тăранса пурăнма пултарать, — тенĕ чĕрĕп.

Çавăнтанпа этемсем чĕрĕп каланипе усă курса çăкăр тума вĕреннĕ, кайăк-кĕшĕке, выльăх-чĕрлĕхе сахалтарах çие пуçланă.

Сыснана вăл чĕрĕп хыççăн кайса час таврăнманшăн пухура ятланă. Турă ăна ылханнă:

— Хĕвеле куçупа çулталăкра виçĕ хут анчах курăн, — тенĕ.

Сысна çилленнипе чĕрĕпе те, чирлĕ путеке те, этеме те çиет. Чĕрĕп тата шăшие кураймасть: тĕл пулсан ăна тытса çиет.

## Тырă-пулă ĕçĕ

### 564

Тĕнчене шыв илнĕ хыççăн çĕр çинче çимелли нимĕн те юлман тет. Кăшт вăхăт иртсен çеç темĕнле курăк вăррисем шăтса тухнă. Этем выçăпа вилес мар тесе çав курăксен вăррисене илсе, шĕвĕр патак илсе çĕре акма шутларĕ тет, ку вăрăсенчен, тен, çимелли шăтса тухĕ тесе. Çапла вара вăл хăйне кирлисене суйласа илчĕ тет кайран. Çĕрне те кайрантарах шĕвĕр патак пек япалапа сухалама тытăнчĕ тет.

### 565

Патша çынсене çĕр акса ĕçлеме валеçсе панă чух ыттисемпе пĕрле чикансем те пулнă тет. Вĕсем пурте ыттисем епле тăрăшса ĕçленине пĕлесшĕн, ĕçлесе кăтартма ыйтнă тет. Чикансем вара çĕр ĕçлеме йывăррине пĕлсе тырă вăрлăхне пĕçерсе акнă тет те, тырри шăтман тет. Патша çавна курсан: «Кусем тырă тума пĕлмеççĕ», — тесе вĕсен çĕрне ыттисене валеçсе панă тет. Çавăнпа чикансем вырăнтан вырăна куçса çӳреççĕ, çынсене, ухмаххисене, улталаççĕ.

## Çурла

### 566

Этем хăй тырă акнă, мĕнле пуçтармаллине пĕлмен. Каярахпа шутласа илнĕ те улăмне те выльăха валли пуçтарма пуçланă.

Турă этеме пулăшма пулнă. Вăл ăна уйĕ çине пăшатан пăрахса панă. Этем вара тырра пăшатанпа тирсе татса вырнă. Капла ниепле те час пулман.

Турă этеме: «Тыррине те патăм, пăшатанне те патăм, сире тата пулăшам», — тесе каланă, вара этеме кукăр юман туратти пăрахса панă. Этем çавăнпа тырă вырма пуçланă. Кайран ун вырăнне этем тимĕртен çурла тунă. Капла ĕç кал-кал кайнă тет.

13. Заказ № К-4231.

## 567

Ӗлӗк тырӑ вырма ҫурла пулман тет. Тырра аптӑрипе сыпӑкӗ тӗлӗнчен чике-чике хуҫнӑ тет. Ҫавна Турӑ курнӑ тет те ҫынсене хӗрхеннӗ тет. Ҫынсем ҫывӑрма выртсан вӑл вӗсене ҫурла пӑрахса панӑ тет.

## 568

Ӗлӗк этемсем тырра пӑшатанпа вырнӑ тет. Пӗрре ӗлӗк виҫҫӗн тырӑ выраҫҫӗ тет. Кусем кӑнтӑрлана кайсан пӗр ҫын пӗр-ик кӗлте вырать те ҫурлине кӗлте ҫине чиксе хӑварать. Акӑ хай ҫынсем таврӑнаҫҫӗ тет те вырма каҫалӑк патне пыраҫҫӗ тет. Кусем пырсанах хай ҫурлана тӗл пулаҫҫӗ. Ҫурла патне пыма та хӑраҫҫӗ тет. Пӗри калать:

— Ан пырӑр унта, вӑл ҫын ҫиекенни, — тет. — Астӑвӑр-ха, епле вӑл ыраша ҫисе пӑрахнӑ та ҫыхса хунӑ тет.

Капла каласан ҫурла патне пыма та хӑраҫҫӗ тет. Хайхисем яла ҫын чӗнме каяҫҫӗ тет. Яла ҫитеҫҫӗ те ҫынсене калаҫҫӗ. Ку ҫынсем пӗтӗм яла систереҫҫӗ. Вӗсем ҫынсене ҫапла каланӑ:

— Часрах кайӑр хире, унта тырра ҫиекенни килнӗ, — тенӗ.

Ҫынсем пӗтӗм ялӗпе ку ҫын ҫиеккеннине вӗлерме каяҫҫӗ. Ҫитсен пӗри те ҫурла патне пырса пӑхман. Тахӑшӗ каланӑ:

— Ан пырӑр, вӑл ҫынна ҫиет, авӑ тырра епле ҫисе пӑрахнӑ, — тенӗ.

Ҫапла ҫурла патне пыраймасӑр темӗнччен тӑнӑ. Хӑйсем пӗрне-пӗрне калаҫма чарнӑ:

— Ан калаҫӑр, вӑл ҫывӑрать вӗт-ха, тӑрсан пурсӑмӑра та ҫийӗ, — тенӗ.

Пӗр теветкелли пырать те ҫурла авринчен ерипе тилкепепе ҫыхать те айӑкран туртать тет. Вара пӗтӗм ялӗпе сӗтӗрсе ҫурлана шыва яма илсе каяҫҫӗ тет. Хайхисем шыв хӗрне ҫитсен часрах кимӗ илсе килеҫҫӗ те кимӗ ҫине кӗрсе Атӑлӑн варрине яма тытӑнаҫҫӗ тет. Хӑшӗ шывӑн хӗррине кӑна яма хушаҫҫӗ тет. Хӑшӗ калаҫҫӗ:

— Шыв хӗрне ярсан тухӗ! — теҫҫӗ.

Вара кимме ҫур ялӗ кӗнӗ, вара ҫурлана шыва яма Атӑл варрине кӗреҫҫӗ. Ҫурлана путарма тилхепен тепӗр вӗҫне тем пысӑкӑш чул ҫыхнӑ тет. Акӑ хайхисем Атӑл варрине ситсен кимме чараҫҫӗ тет, киммине чарсан хай ҫурлана шыва яма тытӑнаҫҫӗ тет. Малтан шыва чулне ывӑтаҫҫӗ тет. Чулӗ темӗн таран анса каять тет, ҫурли кимӗ хӗрне шӑлӗпе ҫакӑнать те, кимӗри мӗнпур ҫын шыва кайса вилет тет. Шыв хӗрринче тӑракансем: «Шыва ячӗҫ, пӗтрӗ ӗнтӗ. Шывра мӗн чухлӗ ҫынна вӗлерчӗ те кунта пӗтӗм ялӗпе пӗтеретчӗ иккен», — тесе калаҫса тӑраҫҫӗ тет.

Ҫапла ҫав ҫурла пӗр ҫӗр ҫын вӗлернӗ тет ҫав. Кайран тепле вара ҫурлапа вырма пуҫланӑ, пӑшатанне тепле пӑрахнӑ.

## 569

Этемсем тырӑ акса тума вӗренсен малтанах ӑна ҫурлапа вырман, ун чухне ҫурла пулман-мӗн, ӑна шухӑшласа кӑларман пулнӑ. Ҫурла вырӑнне этемсем аптӑрипе усӑ курнӑ: улӑм пӗрчисене аптӑрипе сыпписем тӗлӗнчен шӑтарса хуҫса пӗрерӗн-пӗрерӗн пуҫтарнӑ тет.

Пӗрре ҫапла хирте саккӑрӑн пӗртӑван тырӑ вырнӑ. Темӗн пек тӑрӑшсан та вӗсем аптӑрипе ӗҫлесе кӑнтӑрлаччен тырра нумай вырайман. Кӑнтӑрла-

хи апат çитсен саккăрăшĕ те канма выртнă та çывăрса кайнă. Кăсем çывăрнă вăхăтра вĕсен ани çине пĕр шурă сухаллă старик пынă та тыррине тимĕр çурлапа вырма тытăннă. Пĕччен пулин те вăл сакăр тăван çывăрнă вăхăтра лешсем саккăрăн кăнтăрлаччен вырнинчен ытла вырнă. Сакăр тăван вăрана пуçласан ватă çын васкаса кайнă. Хыпаланнипе çурлине астуман: вăл тĕм çине ларса юлнă.

Сакăр тăван тăнă та каçалăкĕсем умне утнă. Анчах каçалăкĕсем инçе куçса кайнине, тырра такам вырса панине курсан пит тĕлĕннĕ. Ăнсăртран вĕсем çурлана та курнă. Анчах вĕсем çурлана тырра касса çиекен кукăр хурт пулĕ тенĕ. Вĕсем: «Кукăр хурт! Кукăр хурт!» — тесе кăшкăрма тытăннă. «Ку кукăр хурта вĕлерес пулать, вĕлермесен пĕтĕм тырра пĕтерĕ вăл. Авă хамăр каннă вăхăтра çеç мĕн чухлĕ касса тухнă вăл. Атьăр часрах ăна шертепе çапса вĕлерер!» — тенĕ тăвансенчен асли. Хăшĕсем чупнă шерте шырама. Шыракан тупать теççĕ. Кусем те тупнă: кĕç йăтса та килнĕ шертене.

Тăванĕсенчен пĕри çурлана шерте вĕçĕпе çаклатнă та çӳлелле вăрăнтарнă. Çурла теприйĕн ĕнси çине кач пырса ларнă. Виççĕмĕшĕ часрах чупса пынă та çурла авринчен кăрт! туртнă. Çурла иккĕмĕшĕн мăйне каснă татнă, сакăр тăванран пĕри çурла пирки пĕтнĕ. Чĕрĕ юлнă çичĕ тăван хăраса ӳкнĕ: «Мĕн тăвас ку кукăр хурта? Вăл пире пурне те вĕлерсе пĕтерĕ», — тенĕ. Тăвансенчен пĕри каланă: «Атьăр ăна шыва путарар», — тенĕ. «Атьăр, атьăр!» — килĕшнĕ ыттисем. Хайхисем çурлана шерте вĕçĕпе çаклатса шыв хĕррине илсе пынă. Кунта вĕсем вĕçне пысăк чул çыхнă. Унтан ким çине ларса кӳллĕн чăн тарăн вырăнне ишсе кайнă. Унта çитсен çурлана шыва пăрахма тытăннă, анчах çурла кимĕ хĕрринчен çакланнă та кимме хăвăрт шыва чикĕнтернĕ. Çичĕ тăван пурĕ те ким çинчен шыва ӳкнĕ те путнă.

Çапла инкек пулса тăнă этемсем çĕнĕ ĕç хатĕрĕпе усă курма пĕлмен пирки. Анчах нумаях та мар иртнĕ вăхăт, çурла этемсен аллинче пит хаклă ĕç хатĕрĕ пулса тăнă. Çурла уйра ӳснĕ тырра пуçтарма ĕçре аптăринчен нумай хут усăллăрах пулнине этемсем часах курса ĕненнĕ.

## 570

Ĕлĕк-авал тырă вырнă вăхăтра чăвашсем улттăн-çиччĕн пухăнса утса пыраççĕ тет. Сăнаса пынăран курах кайрĕç: çул хĕрринчи ана çинче тыр хăмăлне такам кăклас вырăнне хачăпа каснă пек тикĕс вăтăрса тухнă.

— Пăхăр-халĕ, пăхăр, мĕнле кайăк çисе янă-ши çак анасенчи тырăсене? — тĕлĕнсе тăраççĕ çынсем.

— Тыр хурчĕ тухнă тет, çав çакăн пек тикĕс çисе тухнă пуль тырра, — терĕ пĕри.

Унтан та пулмарĕ, çынсем каçалăк умĕнче выртакан çурлана курса:

— Куратăр-и, каçалăк умĕнче хайхи тыр хурчĕ выртать, вăн-вăн, авăннă, — терĕ пĕри.

Анчах çывăха пыма хăрать. Вĕсенчен пĕри, чăрсăртараххи, упаленсе пырса çурлана кантрапа аран-аран çыхрĕ те:

— Акă вăл тыр хурчĕ! — тесе туртса кăларчĕ. Кĕпĕрленсе тăракан çынсем хăраса чăлпăр-чалпăр саланчĕç. Унтан пурте:

— Айтăр яла илсе каяр ку хурта! — теме пуçларĕç.

Хăрамантараххи çурлана çул тăрăх вăрăм кантрапа туртса пырать. Çурла çĕр муклашкисене леке-леке темĕн тĕрлĕ сиксе выляса пырать.

— Ерипентерех ут, тартас марччĕ! — теççĕ хыçалтисем.

Яла çитсен халăх кĕрлесе тухрĕ.

— Мĕнле кайăк ку? — тесе ыйта пуçларĕç.

— Тыр хурчĕ вăл, тыр хурчĕ, — тет сĕтĕрсе килекенĕ.

— Çурла вĕт вăл, тыр хурчĕ мар. Малашне тырра кăклама пăрахса çакăн пек çурлапа вырма пуçлатпăр ĕнтĕ, — терĕ пĕри, Хусантан килни.

## 571

Ĕлĕкех çемчĕке* никам та çимен, ăна çиме те пĕлмен тет. Анчах та пĕр ватă старик таçтан çемчĕке çиме пуçланă, вăл ыттисем сисиччен, çĕр типсе çитиччен çинĕ тет çемчĕкне. Çĕр типсен çынсем пăхаççĕ — çĕр çинче çемчĕк хупписем. Вара вĕсем кăна çынах çинĕ тесе çимелли япаласен шутне кĕртнĕ тет. Çав старике хисеплесе вĕсем кашни çулах вăл пурăннă вырăна çемчĕк хупписем пырса тăкма, темле асамлă сăмахсем калама тытăннă тет.

# Сăра вĕретни

## 572

Пĕр юрлă çын пит начар пурăннă. Пĕрре çапла хире сухана кайсан кăнтăрла киле киличчен кăнтăрлахи апат унтах çийĕп тесе шухăшласа кушелне çăкăр чиксе каять. Хăй анине сухаланă чухне Шуйттан ачи вăрттăн унăн çăкăрне вăрласа каять. Ку çапла ĕçлесен, кăнтăрла çитсен, çиме ларса кушелне уçса пăхать, çăкăрĕ çуккине курсан: «Çăкăрăма кам илсе кайнă?» — тесе шухăшлама пуçлать. Никам илсе кайнине те пĕлмесĕр: «Ан тив ĕнтĕ, кам илсе кайнине Турă пĕлет пулĕ», — тет. Пăртакçă кайсан хăй каллех: «Каçчен çимесĕр тӳсĕп-халĕ», — тесе тытăнчĕ тет ĕçлеме. Каç пулсан Шуйттан хăйĕн пуçлăхĕ патне таврăнсан кунтан:

— Эсĕ паян мĕн турăн? — тесе ыйтса пĕлнĕ.

— Мушикăнне кушелĕнчен çăкăрне вăрларăм, — тет ку та.

— Çăкăрне вăрласан мушик мĕн каларĕ? — тет.

— Кам илнине Турă пĕлет пулĕ терĕ, — тет Шуйттан ачи.

— Апла Турра асăнчĕ пулсан пыр, çав çынна виçĕ çулччен ĕçлесе парăн! — тет.

Шуйттан хăйне асăннă пулсан, паллă, çавăнпа ăна виç çулччен ĕçлеттерме хушман пулĕччĕ.

Ку Шуйттан часах çын пулса çав мушик патне хире ĕçленĕ çĕре пырать те:

— Мушик, эсĕ мана тарçа тыт, — тет.

Мушикĕ ăна хирĕç:

— Хам та пит юрлă çын, лашам та манăн пит начар, епле сана тарçа тытам, — тет.

— Тыт! — тет Шуйттан ачи те ун патĕнчен каймасăр.

Калаçсан-калаçсан мушикĕ кăна тарçа тытса ярать те хăй урапа айне

* Хĕвел çаврăнăш.

выртса тарçă епле ĕçленине пăхса вырта пуçлать. Шуйттан ачи ĕçлеме тытăнсанах хай мушикĕн начар лаши Шуйттан хăвачĕпе тытăнчĕ тет темĕн тĕрлĕ вăйпа ĕçлеме. Сухи пуçĕ пăрăлтаттарса анчах пыма пуçларĕ тет. Акнă кĕр тыррисем ĕлĕкхи пăхнă çĕрте уйрăм темĕн тĕрлĕ вăйлă, аван пула пуçлаççĕ. Виçĕ çул хушшинче çапла Шуйттан ачи ĕçленĕ пирки хай мушик чисти пуйса каять. Кӳрши-аршисем пĕтĕмпе тĕлĕнсе тăраççĕ. Çапла пуйса çитсен Шуйттан ачи кăна:

— Эпир пуйрăмăр ĕнтĕ, атя пурне те чĕнсе ĕçкĕ тăвар, — тет.

Хай малтан, Шуйттан ачи, сăра тăвать, хăмла илсе килсе ярса йӳçĕтет. Сăри ĕлкĕрсен пĕлекен тус-йышĕсене, хурăнташсене пурне те чĕнсе пуçтарса ăшă сăра ĕçтерме пуçлать. Лешсем, халиччен сăра ĕçмен çынсем, пурте ĕçсе ӳсĕрĕлеççĕ. Тепĕр кунне пурте мухмăрласа чирлеççĕ, пуçĕсем ыратаççĕ:

— Ку пире мĕн турĕ? — тесе чисти тĕлĕнеççĕ.

Ун патне кайсан унтан:

— Эсĕ пире мĕн ĕçтертĕн? — тесе ыйтса пĕлеççĕ.

Кусем:

— Сăра ĕçтертĕмĕр, — теççĕ. Хăйсем татах нӳхрепрен сăра ăсса кĕрсе çак çынсене тăраниччен ĕçтереççĕ. Мухмăрĕсем пĕтеççĕ, хăйсем каллех ĕлĕкхи пек ӳсĕр пулаççĕ. Çавăнтан вара вĕсенчен курса ыттисем те хăйсем валли çапла сăра тăва пуçларĕç тет.

## 573

Шыв пулас умĕн Ноя Турă курнă тет те карап тума хушнă тет; тĕнчене шыв тултарассине те Турă пĕлтернĕ тет. Ной тытăнчĕ тет карап тума. Мĕн тунине никама та каламасть тет. Арăмĕ курчĕ тет те: «Мĕн тăватăн-ха эсĕ, ватсупнă?» — тесе ыйтрĕ тет. Ной каламасть тет: ăна Турă никама та калама хушман тет иккен. Вара Ной арăмĕ патне Шуйттан пынă тет те ак çапла каланă тет: «Эпĕ Ной мĕн тунине ăна калаттарап. Эсĕ кăвас ту та вара çав кăвас çине ак çак курăка яр», — тесе хăмла панă тет. Ной арăмĕ Шуйттана итлесе кăвас тунă тет те кăвас çине хăмла янă тет. Вара Ноя ĕçтернĕ тет. Ной, ывăннăскер, ку кăваса ĕçнĕ тет те кăшт хĕрĕнкĕ пек пулнă тет; ĕçсен-ĕçсен ӳсĕрĕлсех кайнă тет, вара ӳсĕрпе: «Карап тăватăп», — тесе янă тет. Арăмĕ Ной мĕн тунине Шуйттана каласа панă тет. Шуйттан Ной арăмне каларĕ тет: «Турă пире ахаль каçармасть куна, карапăн пĕр кĕтессинче пĕчик шăтăк юлать. Эсир карап çине ларатăр та — шăтăкран шыв юхса кĕрсе путатăр, — терĕ тет. — Эсĕ карап çине: «Лар, шуйттан!» — темесĕр те ан лар», — терĕ тет.

Ной карап туса пĕтерчĕ тет. Шыв тула пуçларĕ тет. Ной арăмĕ анчах лармасть тет. Ной арăмне: «Лар, лар», — тесе калать тет. Арăмĕ лармасть тет. Ной вара çилленнипе: «Лар, шуйттан!» — тесе ячĕ тет. Арăмĕ ларчĕ тет. Шуйттан та йăшт анчах кĕрсе кайрĕ тет те хӳрине карап кĕтессинчи пĕчик шăтăка чиксе лартрĕ тет...

Ишсе кайрĕç тет малалла. Тĕнчене шыв тулнă чухне шуйттансен пурин те пĕтмелле пулнă тет. Çапла улталаса çеç шуйттанĕ тĕнчере тăрса юлнă тет. Çавăнтан вара çынсем сăра тума та вĕренсе кайнă тет. Сăра тума çынсене Шуйттан вĕрентнĕ, çавăнпа та сăрана тинĕсре ĕçмеççĕ.

## 574

Пĕр вăхăтра аслă Шуйттан кĕҫĕннисене пухнă та каланă:

— Эсĕр тĕнчери ҫынсене ҫылăха кӳртме кайăр.

Вăл вĕсене тĕрлĕ ҫĕре салатнă, хăшне пуп таврашсем патне, хăшне кирек мĕнле чинлă ҫынсем патне, хăшне ҫĕр ĕҫлекен патне. Кĕҫĕннисем ун сăмахне итленĕ те, пурте хăйсене хушнă ҫĕре саланнă. Кайран тепĕр хут аслă патне пухăннă.

Пурте хăйсене хушнисене ҫылăха кĕртнĕ, пĕри анчах хăйне хушнине (ҫĕр ĕҫлекене) ҫылăха кĕртеймен. Ҫылăха кĕртеймен усалне ҫапса вĕлермелле пулнă. Кĕҫĕн усалĕ вара:

— Тепĕр виҫĕ ҫула вăхăт парăр-ха, виҫĕ ҫулта та ҫылăха кĕртеймесен ҫапса вĕлерĕр вара, — тенĕ.

Чăнах та ăна виҫĕ ҫула вăхăт панă. Вăл вара ҫын пек пулса ҫулпала кайнă. Пĕр ҫул хĕрĕнчех пуянсем суха тунă та ку ҫынна:

— Ăҫта каян-ха? — тенĕ.

— Ăҫта каясси... вырăн шырап, тăранса пурăнмалăх кĕртсемччĕ, — тенĕ.

Пуян ҫын ывăлне калать:

— Акă эпĕр ҫын шыраттăмăрччĕ, ҫын кунтах килчĕ, тытатпăр, — тенĕ.

— Мĕн ятлă эсĕ? — теҫҫĕ.

— Путап, — тет ку.

Вара калаҫса килĕштерчĕҫ те тытрĕҫ. Каҫ пулсан киле таврăнчĕҫ. Путап килĕнче питĕ хытă ĕҫленĕ, кунĕпе-ҫĕрĕпе ĕҫленĕ, анчах ҫĕлĕкпе алсине хывман нихҫан та. Ҫĕлĕкне хывсан мăйраки курнасран хăранă, алсине хывсан чĕрни курнасран хăранă.

Вăл хытă ĕҫленинчен хуҫисем хăйсем те тĕлĕнсе кайнă. Тата вăл тырă пулассине малтанах пĕлсе тăнă. Хăй пĕлнипе хуҫана йăлт пуйтарса янă. Ҫынсен тырă пулман чух та унăн пулнă. Уяр пулас ҫул ушаха актарнă. йĕпе пулас ҫул сăрт ҫине актарнă. Хуҫа унăн сăмахне анчах итлесе пурăннă.

Пĕрре кӳршисем кумми патне тырă ыйтма пынă.

— Кумма, пĕр виҫĕ пăт тыр парса яр-ха, — тет кӳрши.

Кумми:

— Парас, — тет.

Путапĕ парасшăн пулман, парса сăвапа кĕресрен хăранă.

— Ан пар. Халĕ миҫе ҫул выҫлăх пулассине пĕлетни? — тет.

Кумми тарăхрĕ те капла калать:

— Эх, Усал, мĕн кăшкăрса тăран эсĕ, ĕмĕрте те ҫĕлĕкпе алсуна пăрахас ҫук вĕт, сана акă ҫĕлĕкне хывса пăхăпăр-ха, — тенĕ.

Вара Путап хăранă:

— Чăнах та хывса пăхĕҫ, тарăхтарас мар, патăр ĕнтĕ, уншăн нумаях сăвапа кĕреймĕ-ха, — тенĕ.

— Парса яран пуль эппин, — тенĕ.

Хуҫа вара парса янă. Усалĕ хуҫине калать:

— Епле ĕнтĕ: халĕ сана ҫынсем калаҫҫĕ-и эсĕ темĕн чухлĕ пуян тесе? — тет.

Хуҫи:

— Пĕр ҫын та палламаҫҫĕ, — тет.

— Апла пулсан эпĕ сана ҫынсемпе паллашмалли туса парам-ха, вара сана кашни куракан ҫынах алă тытать.

— Юрĕччĕ те апла тусан, — тет.

— Эпĕ вĕрентес тетĕп сана, вăл питту* ятлă, ăна çапла тăваççĕ. Малтан катка çине шыв тултараççĕ, унта тырă яраççĕ. Çав каткари тыр шўсен ăна çĕре кăлараççĕ, çĕрте кĕççеленсе кайиччен выртараççĕ, кĕççеленсен ăна салатаççĕ, салатсан кăмакара типĕтеççĕ, типĕтсен арманта авăртаççĕ. Авăртнă чух ăна шултрарах авăртаççĕ, унăн çăнăхне салат теççĕ. Салат авăртсан каçпала пыллантараççĕ, хуранпа вĕретеççĕ. Тепĕр ирхине вара тепĕр хут вĕретсе, шан тăрăх улăм сарса, патаксем хурса çав салатпа пĕрле шывне юхтараççĕ. Юхса тухнă шывне ăсла теççĕ, вăл питĕ пылак пулать. Çав ăслана пысăк катка çине яраççĕ, каçпала хăмла вĕретсе яраççĕ те каткана кирек мĕнле япалапа витеççĕ те пĕрер кун йўçĕтеççĕ, ăна йўçĕтме çĕпре кирлĕ, йўçсен вара алапа хăмлине сĕреççĕ, хăмли çиеле юлать, шывĕ ала витĕр юхать. Юхтарсан пичкене яраççĕ. Ăна ĕçсен вара ватă çын çамрăкланать, çамрăкки те ватăлать, вăл питĕ лайăх япала, — тет.

Хуçасем чăнах та итлерĕç, вăл каланă пек турĕç. Анчах кусенĕн хăмли çук пулнă.

— Вăрманта нумай вăл, унтан татса килĕр, — тет Усалĕ.

Ăна татса килчĕç. Çĕпре çук вĕсенĕн. Усал пырса катка çине хăсрĕ те, ăсла чашласа йўçе пуçларĕ.

— Эсĕр ўлĕмрен хăмлана пахчана лартăр, çĕприне пичке тĕпĕнчен илĕр, вăл пичке тĕпне ларса юлать, — тенĕ Усалĕ.

Çав хушнă пек тунă. Унтан кўршĕсене чĕнсе ĕçе пуçланă. Ĕçнĕ çĕре Путап аслă Шуйттанне те чĕннĕ. Пўртре нимĕн йĕркесĕр асаççĕ: хăшĕ çĕрте йăваланать, хăшĕ пĕр-пĕринпе çапăçнă, ваттисем çамрăкланнă, çамрăккисем ватăлнă. Утайман карчăксем питлĕх çапса ташланă. Аслă Шуйттанĕ савăнса анчах ларнă, çынсен мĕн-мĕн тунă çылăхĕсене çырса анчах ларнă.

Ĕçнĕ чухне Путап урине тăсса ларнă, хуçа арăмĕ кăкшăмпа сăра ăсса кĕнĕ. Путап уринчен такăнса кăкшăмĕ те çĕмĕрĕлнĕ; сăри те тăкăнса кайнă. Упăшки вăл кăкшăма çĕмĕрнине курнă та тарăхса кăшкăрса янă:

— Эх, Шуйттан! Урупа чипер пусмасăр кăкшăма çĕмĕртĕн! — тесе ярса илнĕ те хытă хĕненĕ.

Аслă Шуйттанĕ:

— Акă тепĕр çылăх! — тесе çырса ларнă.

Усал вара питĕ савăнса каларĕ тет:

— Ўсĕр çынсем пĕтĕмпех ман алра, уррисем анчах Туррăн, — тесе каларĕ тет.

Ĕçсен-ĕçсен çынсем киле саланчĕç тет. Тепĕр кунне хăшĕ маткине хĕненĕ, хăшĕ сăмсине çĕмĕрсе пĕтернĕ, хăшĕ ашшĕсене хĕненĕ тенĕ сасă анчах пулнă. Хăшĕ пуç ыратнипе аптăранă. Пуç ыратнине мухмăр теççĕ, мухмăртан каллех ĕçес пулать, вара чарнать вăл теççĕ. Чăнах та çав хуçана кайран куракан ĕ алă тытаççĕ: «Тавăсье ĕçнисене!» — теççĕ.

Çакна хуçи сиснĕ:

— Путех çын мар пулĕ вăл, Усал пулĕ? — тенĕ.

Ашшĕ кăларса ярас тенĕ, ывăлĕ ярасшăн пулман. Вара ашшĕ кутамкка ĕçлесе*, çăкăр чиксе хăй килĕнчен хăй тухса тарнă.

Çавăнтан кайран сăрана пурте тăва пуçланă. Усал çапла май тупса çылăха кĕртнĕ. Кайран вара аслă Шуйттанĕ питĕ юратнă ăна, пуринчен те маларах хунă. Путап çапла вĕрентнĕ питту тума.

---

* Çĕлесе.

## 575

Хальхи вӑхӑтра пурӑнакансенчен малтан халӑх ҫылӑхланса ҫитнӗ, Турӑ ҫавӑнпа вӗсене пӗтерме шутлать тет, хӑйне итлекенсене ҫеҫ хӑварма шутлать. Итлекенни Ной ятлӑ ҫын пулнӑ. Нойӑн пилӗк ывӑл пулнӑ. Турӑ ӑна чӗнсе илет те калать:

— Эсӗ, Ной, карап ту, вӑл пысӑк пултӑр, пилӗк мӑшӑр тасисене, ыттисене виҫшер мӑшӑр лармалла пултӑр.

Ной Турӑран:

— Ҫапла туни мӗн тума кирлӗ? — тесе ыйтать.

Лешӗ ҫапла калать:

— Тӗнчери халӑх ҫылӑхланса ҫитрӗ, ӑна пӗтерес пулать. Темиҫе кунран хӗрӗх талӑк ҫумӑр ҫӑвӗ, шыв тулса ҫитӗ, вара карап ҫинчисем ҫеҫ юлӗҫ. Эсӗ ӑна арӑмна ан кала, — тесе хытӑ асӑрхаттарать.

Ной кимӗ тума пуҫлать. Ной кимӗ тунипе ҫӗр ҫинчи Усал интересленет: «Мӗн тӑвать-ши Ной?» — тет. Ной патне вӑл тем пулса та пырать, анчах Ной нимӗн те каламасть. Вара Усал унӑн арӑмӗнчен улталаса ыйтса пӗлме шутлать.

— Сан старикку мӗн тӑвать вара, ыйтса пӗл. Вӑл сана та, мана та интереслӗ. Тавай пӗрле ыйтӑпӑр. Эпӗ сана валли пӗр япала илсе килетӗп. Эсӗ ӑна упӑшкуна ӗҫтер, — тет.

Ной арӑмӗ килӗшет. Хайхи Усал Ной арӑмне салат, ҫӗпре илсе килсе парать, вӗретме, сӗрме хушать. Ной арӑмӗ Усал хушнине пӗтӗмпех тӑвать. Ҫӗпре ярса йӳҫӗтет. Усалӗ:

— Ной килсен шыв ӗҫме ыйтсан эсӗ ҫакна ӗҫтер, — тет.

Кусем Ной киличчен сӗрсе лартаҫҫӗ. Ной килет те апат ҫиме ларать, шыв пама ыйтать. Арӑмӗ ӑна тӳрех пӗр курка ҫак сӑрана ӑсса парать. Ной ӗҫет, анчах кӑшт тӑхтасанах унӑн пуҫӗ анкӑ-минкӗ пулса каять. Вара арӑмӗ ун патне пырать те тӗпчеме тытӑнать.

Ку:

— Никама та калама юрамасть, сана анчах калатӑп. Эсӗ, асту, никама та ан кала, — тет. — Турӑ мана карап тума хушрӗ. Хӗрӗх кун ҫумӑр ҫӑвать, ҫӗр питне шыв илет. Ҫавӑн чух эпир карап ҫине ларса ҫӑлӑнӑпӑр, — тет.

Арӑмӗ вӑл каланине тимлӗ итлесе ларать.

Тепӗр кунне Усал пырать те, Ной арӑмӗ ӑна хӑй пӗлнине пурне те каласа парать. Усал шутлать: «Эпӗ те вара вилетӗп-иҫ, манӑн та мӗнле те пулин ҫӑлӑнса юлмалла». Вара вӑл Ной арӑмӗ патне пырать те калать:

— Эсӗ кимӗ ҫине упӑшку: «Лар, шуйттан!» — темесӗр ан лар, — тет.

Ной кимӗ туса пӗтерет. Анчах хӑй те асӑрхамасть, унӑн кимминче пӗр шӑтӑк юлать. Вара Ной пилӗк мӑшӑр тасисене, виҫӗ мӑшӑр усаллисене пухать те, пурте кимӗ ҫине кӗрсе лараҫҫӗ. Анчах Нойӑн арӑмӗ лармасть тет. Ной арӑмне ларма хушать, леш лармасть тет ҫаплах. Вара Ной ҫилленсе каять те арӑмне:

— Лар, шуйттан! — тесе кӑшкӑрать тет. Ҫапла каласан арӑмӗ ларчӗ тет, унпа пӗрле Шуйттан та кӗрсе ларчӗ тет те кимӗри шӑтӑка хӳрипе питӗрсе лартрӗ тет. Хӗрӗх кун ҫумӑр ҫурӗ тет, шыв илчӗ тет, вара кусем ҫӑлӑнса юлчӗҫ тет. Ҫапла Усал Ной арӑмне сӑра тума вӗрентрӗ тет.

## Пир-авăр тума вĕренни

### 576

Пĕр садра икĕ тăлăх хĕр шăллĕпе пурăннă. Вĕсем шыв ăсма тухсан вĕсем патне Вăпăр карчăк тухать. Вăл ачасене ҫиесшĕн пулнă, вĕсемпе пĕрле сада пынă. Аслă хĕрĕ Вăпăр карчăкĕпе ҫывăрнă. Ҫĕрле Вăпăр карчăк аслă хĕрне ҫиме тытăнать. Ҫавна илтсен йăмăкĕпе шăллĕ Вăпăр карчăкăн икĕ лашипе тухса тараҫҫĕ, йĕтĕн ани патне пырса йĕтĕн ăшне кĕрсе лараҫҫĕ. Вăпăр карчăк та ана патне ҫитет. Ани ыйтать:

— Пир-авăр мĕнле тăвас пулать? — тет.

— Ҫереме сӳрес пулать, акмалла, татмалла, ҫапмалла, тылламалла, арламалла, ҫумалла, куштарса пир тумалла, кĕпе ҫĕлесе тăхăнмалла, — тет Вăпăр карчăк.

Ҫав вăхăтра автан авăтса ярать. Усал, Вăпăр карчăк, ҫухалать. Тăлăх ачасем итлесе ларса пир-авăр ĕҫне вĕренеҫҫĕ.

### 577

Пĕр ҫамрăк арăмăн упăшки вилнĕ пулнă. Ун патне Усал пыма вĕреннĕ. Ҫак хĕрарăм унран ниепле та тасалаймасть.

Пĕри ăна:

— Эсĕ кантăр кĕпи ҫак алăк ҫине, Усал ан кĕрейтĕр, — тесе калать тет.

Хĕрарăм кантăр пир кĕпи ҫĕлерĕ тет те алăкĕ ҫине ҫакса ячĕ тет. Усал пычĕ тет. Кантăр кĕпи:

— Чим-ха, ан кĕр-ха, — тет, — хам ĕмĕрте мĕн курнине каласа кăтартам, — тет.

Усалĕ:

— Кала эппин, — тет.

— Эпĕ хам ĕмĕрте пит нумай курнă, — тет Кĕпи. — Мана акиччен ҫĕре сухалаҫҫĕ, сӳреҫҫĕ, вара мана акаҫҫĕ. Ик-виҫ кунтан сӳрепе тавăраҫҫĕ. Эпĕ шăтса тухатăп, ӳсетĕп. Ман ҫинче пуса пулать.

— Кӳрт ĕнтĕ! — тет Усал.

— Чим-ха, каласа пĕтерем-ха, — тет Кĕпи. — Пусине ман ҫинчен уйăрса илеҫҫĕ, вара эпĕ пулса ҫитетĕп те, мана тĕппе вăяҫҫĕ — татаҫҫĕ-тăпăлтараҫҫĕ, унтан кута татаҫҫĕ.

— Ну, кӳрт ĕнтĕ! — тет Усалĕ.

— Чим-ха, каласа пĕтерем-ха, — тет Кĕпи. — Унтан мана ҫапаҫҫĕ, ман вăрра пухса илеҫҫĕ.

— Ну, кӳрт ĕнтĕ! — тет Усал.

— Чим-ха, каласа пĕтерем-ха, — тет Кĕпи.

Кĕпи каласа пĕтерейместь — автан авăтса ярать. Усал вăл каҫ арăм патне кĕреймесĕрех пăрахса каять.

Тепĕр каҫ хайхискер татах пычĕ тет. Кĕпи калать тет:

— Ман вăрра ҫапса тĕшĕклеҫҫĕ, сăвăраҫҫĕ, пухса хураҫҫĕ, кантăрне уйрăм купалаҫҫĕ те шыва кайса хутаҫҫĕ. Ҫапла мана виҫ эрне шывра выртараҫҫĕ.

— Ну, кӳрт ĕнтĕ! — тет Усал.

— Чим-ха, каласа пĕтерем-ха, — тет Кĕпи. — Виç эрнерен мана шывран кăлараççĕ те типĕтме тăратаççĕ.

— Ну, кӳрт ĕнтĕ! — тесе калать тет Усалĕ.

— Чим-ха, каласа пĕтерем-ха хамăнне, шăмма-шакка мĕнле çĕмĕрнине каласа кăтартам, — тет Кĕпе. — Манне пĕтĕм шăмма-шакка çĕмĕрсе силлеççĕ, ӳте шăм-шакран тасатаççĕ. Унтан мана килĕ çине хурса, ниме ярса тăваттăн-пиллĕкĕн тĕвеççĕ, — тет.

— Кӳрт ĕнтĕ! — тет Усал.

— Манран мĕнпур тусана тӳсе кăлараççĕ, таса ӳт анчах хăвараççĕ, — тет Кĕпи. — Турахуп çине çакса мана, пĕрчĕн-пĕрчĕн уйăрса, арласа манран çип тăваççĕ. Çиппине хутăр йывăççи çине хутăрласа, унтан илсе шыв çине чиксе çăра кĕлпеле чĕркесе хураççĕ, пур куçа-пуçа хупăрлаççĕ, пур куçа кĕл тултараççĕ, нимĕн те курмастăп.

— Кӳрт ĕнтĕ! — тет Усал.

— Чим-ха, хам ĕмĕрте мĕн-мĕн курнине каласа пĕтерем-ха, — тет Кĕпи.

Татах кӳртмест Кĕпи Усала. Татах автан авăтса ярать.

Виççĕмĕш каç Усал каллех пырать.

— Мана вара çуса тасатаççĕ, типĕтеççĕ, çăмхалаççĕ те кĕр витĕр, хĕç витĕр кăлараççĕ. Пĕрчĕн-пĕрчĕн ывăтса манран пир тăваççĕ.

— Ну, кӳрт ĕнтĕ!

— Нумай мар ĕнтĕ, каласах пĕтерем, — тет Кĕпи.

— Кайран вара пирне шыва чиксе, кĕл çинче вĕретсе, урама шурă юр çине сарса шуратаççĕ, тăрă шывпа куçа тулнă кĕле тасатаççĕ. Татах мана тăваттăн тăрса тĕвеççĕ, çапаççĕ. Чĕркесе хураççĕ те унтан касса кĕпе çĕлеççĕ, — тет кăна Кĕпи — автан авăтса та ярать.

Вара Усал каллех кĕреймен, тарăхса пачах пăрахса кайнă. Çавăнтан вара арăм Усалтан тасалнă тет.

## 578

Чĕрĕк кутлă тумтире Усал çĕленĕ тет. Çав тумтире вăл ыран мăнкун тенĕ каç çĕрле çĕленĕ тет. Çĕлет тет питĕ васкаса, анчах çур çĕр çитет тет. Акă ирхи кĕлле чан çапрĕç тет. Шуйттан чан çапсанах çĕлеме пăрахрĕ тет. Çĕлесси те кут хыçĕнчи чĕрĕк анчах юлнă тет. Вара чĕрĕк кутлă тумтир çавăнтан тухса кайнă тет.

## 579

Пĕрреччен çуркунне лашапа Иисус Христос чирĕклĕ Кошăк патĕнчен иртсе пынă чухне лаши лакса ларнă. Вара Иисус Христос хыпаланса Кошăка çĕвĕç патне лашине туртса кăларма пулăшу ыйтма кĕнĕ. Анчах çĕвĕç каланă: «Манăн халь сансăр пуçне те ĕç нумай, кунне хакла ларать», — тенĕ. Иисус Христос каланă: «Санăн укçу, çиппӳ ăçта çитнĕ, çавăнта анчах çиттĕр», — тенĕ. Унтан тухсан часрах хыпаланса платниксем патне пулăшу ыйтма кайнă. Платниксем каланă: «Какой сан патне пыма, хамăрăн ĕç халь ĕç кунне хакла ларать», — тенĕ. Вара вăл каланă: «Сирĕн турпас ăçта сирпĕнсе çитет, укçусем те çавăнта анчах çитчĕр», — тенĕ. Вăл унтан тухнă та суту-илӳ тăвакан патне кайнă, сут тăвакан вара ун патне пулăшма кайнă. Ана Иисус Христос каланă: «Спасибо сана, эсĕ пуян пулăн», — тенĕ. Çавăнпа та сут тăвакансем кашни сăмахра укçа илеççĕ.

## 580

Çĕвĕçсем çапла калаççĕ: вĕсем нихçан та пуяймаççĕ теççĕ. Акă мĕншĕн. Пĕррехинче урампа Турă виçĕ лаша кӳлнĕ урапапа иртсе пынă. Ун чухне çулĕ питĕ пылчăклă пулнă. Туррăн урапи пылчăка кĕрсе ларнă. Çĕвĕç çакна чӳречерен курнă, анчах ăна хăй ĕçне пăрахса тухма шел туйăннă. Иртсе пыракан сутуçă урапана туртса кăларма пулăшнă та, сутуçăсем хăйсене Турă çакăншăн пилленипе пуйса пурăнмалла пулнă.

# Укçа-тенкĕ

## 581

Ĕлĕк Турă укçа тунă та çынсене укçа илме чĕннĕ. Вырăс тăнă та урине калуш тăхăнса, михĕ йăтса чупнă. Çавăнпа вырăсăн укçа нумай тет. Чăваш тăнă та ура сырма ларнă. Тăли çĕтĕк, çăпата кантри татăк пулнипе урине час сырайман, вăхăт нумай иртнĕ. Çитменнине тата, пĕчĕк хутаçпа кăна кайнă. Хутаçça укçа сахал кĕрет. Çавăнпа чăваш чухăн, укçасăр тет.

## 582

Ĕлĕк Пӳлĕхçĕ халăхсене укçа салатнă. Вырăспа тутар аттисене хывса чупнă. Вĕсене Пӳлĕхçĕ атă тулли укçа тултарса панă. Пирĕн чăваш нимĕн тума аптăраса йĕкĕр ывăçĕпе Пӳлĕхçĕ умне кĕлмĕç пек пырса тăнă. Пӳлĕхçĕ ăна вара йĕкĕр ывăç укçа парса янă. Çавăнпа пирĕн чăваш начар тет.

# Чăваш кĕнеки

## 583

Чăвашсем ĕненнĕ тăрăх, çĕр çинче çитмĕл çичĕ халăх, çитмĕл çичĕ чĕлхе, çитмĕл çичĕ тĕн. Тĕне кашни халăхах Турă панă. Вырăспа тутара тата чăваша Турă çапла тĕн панă.

Пĕррехинче вырăс, тутар тата чăваш виççĕн пĕр çуртра çĕр выртнă тет. Ирхине ирех вĕсем таçтан аякран кăшкăрса калакан сасса илтрĕç тет, такам: «Атьăр, килĕр, хăвăра валли кĕнекене тĕн илĕр!» — тесе калать тет. Кусем васкасах тумланма тытăнчĕç тет. Тутарĕ пушмакне йăкăш-якăш тăхăнчĕ тет те чи малтан чупса тухса кайрĕ тет. Малтан чупса çитнĕшĕн Турă ăна кĕнеке тата виçĕ арăм пачĕ тет. Тутар хыççăн вырăсĕ те аттисене тăхăнса чупса тухрĕ тет, ăна та Турă кĕнеке пачĕ тет, анчах пĕр арăм çеç пачĕ тет. Чăвашĕ ура сырма хăтланса часах тухаймарĕ тет. Турри пăхкаласа-кĕткелесе тăчĕ тет те кĕнекине вăркăнтарчĕ тет те кайрĕ тет. Чăваш чупса тухрĕ тет те пăхать тет, кĕнекине ĕнепе сурăх çисе тăраççĕ тет. Çавăнпа чăваш кĕнекесĕр (тĕнсĕр), саккунсăр юлчĕ тет, çавăнпа вăл халĕ те киреметсемпе çут тĕнче туррисене ĕненсе пурăнать тет. Ĕнепе сурăх хырăмĕнче кĕнеке çĕрхут пулса тăчĕ тет.

### 584

Телей валеçнĕ чух мишер пушмакне тăхăнса пуринчен малтан çитсе илнĕ тет кĕнекене. Вырăс пурттенккесемпе чĕркекелесе тăхăнса чупнă тет, вăл мишертен каярах юлнă тет. Чăваш урине сырма тытăнса темĕн чухлĕ вăхăт ирттернĕ тет. Алăкран тухнă чух ури салтăнса каять те, унтан вăл çĕнĕ кантра явса урине сырса пырать. Телей çуррине ĕне чăмласа пĕтернĕ тет. Çавăнпа чăвашсем телей курма кайран вĕреннĕ тет.

## Сăвă-юрă

### 585

Чăвашсем сĕм вăрмансенче пурăннă тет, вĕсене никам та пĕлмен, никам та пырса çаратса çӳремен тет. Темле пĕрре тутар çарĕсем пырса тухнă çав вăрмана. Çавсем чăвашсене тупнă та хур кăтартма пуçланă: чи хитре хĕрсене тыта-тыта илсе кайса пусмăрланă, хаклă тирсем, укçа-тенкĕ çаратнă, лашасем иле-иле кайнă. Чăваш ялĕсене вут тивертсе çунтара-çунтара янă. Нимсĕр-мĕнсĕр кĕл купи çине тăрса юлнă. Чăвашсем хура куççульпе татăлса йĕрсе юлнă.

Тутарсем хăйсен патши патне кайнă та мĕн пулнине каласа панă. Патши: «Чăвашсем халь мĕн тăваççĕ?» — тесе ыйтнă. Лешсем: «Макăраççĕ чăвашсем, йӳçĕ куççульпе йĕреççĕ», — тенĕ. Урсах кайнă тутар патши: «Макăраççĕ пулсан татах мулĕ юлнă вĕсен! Кайса çĕрпе танлаштарăр!» — тенĕ. Каллех тутар çарĕсем чăваш çĕрĕсене пырса тухнă, ялĕ-хулисене çаратнă, çунтарнă, çĕрпе танлаштарнă. Чăвашсем вара хăйсен çĕрĕсене пăрахса кайнă.

Тек макăрман вĕсем, юрланă. Хурлăхлă, чуна пырса тивекен юрăсем юрланă. Юррисене чунтан юрланă, хурланса юрланă, питĕ эрленсе юрланă. Чунтан юрланă. Тутар патши хăйĕн салтакĕсенчен ыйтнă: «Халь тата мĕн тăваççĕ чăвашсем?» Лешсем: «Юрлаççĕ чăвашсем, юрăсем юрлаççĕ», — тенĕ. «Юрлаççĕ пулсан вĕсен урăх нимĕн те çук. Юрлаччăрах...» — тенĕ вара тутар патши.

Çавăнтан кайнă вара чăвашсен хурлăхлă юррисем. Вĕсем пĕр татăлмасăр, тулă чусти пек, тăсăлаççĕ. Чăваш темле йывăр пулсан та юрă юрлать.

### 586

Сăвăпа юрра куштан Пуш Пуклак питĕ курайман. Тытсан-тусан вăл вĕсене ним хĕрхенмесĕр вутта пăрахса çунтарса яма пулнă. Çавăнпа юрăпа сăвă ăс-хакăл тарăн вар, чăтлăх, кукăр-макăр çырма-çатрасенче пытанса пурăннă. Çак куштан вĕсен йĕрĕ çине ӳкнĕ тет. Сăвăпа юрă ăна сиснĕ те тухса тарнă. Акă вĕсене тытма патнех çитнĕ. Çав вăхăтра пĕр ялта ташă-юрăсăр туй кĕрленĕ. Ни ташлама, ни юрлама пĕлмен. Юрăпа сăвă туй халăхĕ хушшине кĕрсе пачах куçран çухалнă. Куштан туй халăхĕ патне çитнĕ тет. Пĕтĕм туй халăхĕ юрă-сăвăпа савăнса, юрласа ташланă. Куштан ун-кун пăхкаланă — туй халăхĕ хушшинче сăвăпа юрра уйăрса илеймен тет. Çавăнтан вара юрăпа сăвă халăх хушшинче пурăнаççĕ тет.

### 587

Шур Атăл тăрăх утсан-утсан чи вĕçĕнче шурлăх пур тет. Çав шурлăх айккинче — хăмăшлăх тет. Хăмăшлăх çумĕнче карчăк пурăнать тет. Çилтăвăл тухсан хăмăш кашлама пуçлать тет. Хăмăш кашланине итлесе карчăк юрăсем-кĕвĕсем юрлать тет, хăйĕн юррисене пирĕн еннелле ярать тет.

## Ташă-кĕвĕ

### 588

Купăса малтан Турă тунă тет. Тусассăн купăсне Турă ниепле кала пĕлмен тет. Шуйттан та купăс тума тытăнчĕ тет, анчах Шуйттанĕ темĕн тĕрлĕ тăвас тесе тăрăшсан та тăваймарĕ тет. Вара Шуйттан Турă патне пычĕ тет те:

— Эс купăс турăн-и? — тесе ыйтрĕ тет.

Турă каларĕ тет:

— Тăвасса турăм та, анчах кала пĕлместĕп, — терĕ тет. Унтан Шуйттан купăса илчĕ тет те купăс çумне сухăр çыпăçтарчĕ тет. Çапла тусан купăс кала пуçларĕ тет.

Купăс калани çылăх мар теççĕ, мĕншĕн тесен купăсне Турă тунă теççĕ, сухăрне сĕрме çылăх теççĕ: сухăра Шуйттан тунă теççĕ.

### 589

Пĕр Киремет уксах пулнă. Хăй ĕçлесе пурăнайман вăл, çынсем хисеплемен ăна. Ку хăйне тăранмалăх йӳнеçӳ тупасшăн пулнă. Тăвать купăс, хĕлĕхне те хурать, сĕркĕччине те тăвать. Сĕрсе пăхать — купăсĕ каламасть. Каять Турă патне: «Эпĕ купăс турăм, — тет, — анчах купăс ман ытла хытă янрать, мĕнле пĕтерес-ши сассине?» — тет.

Турă калать:

— Эсĕ сухăрне сахалтарах сĕр, — тет. Хай Киремет сухăра сĕрет те янрата пуçлать.

Ку Киремет кайран Эсрелпе те тус пулнă тет. Эсрелĕ кăна тумра, кĕсле тума вĕрентнĕ тет. Купăса, тумрана, кĕслене Кирементрен Хусан чăвашĕ вĕреннĕ тет вара.

### 590

Юрра-ташша Явăл шыраса тупнă. Явăлсем сĕрме купăс тунă, анчах вĕсен купăсĕ нимле хитре сас та кăларайман! Вара вĕсем Турă патне пынă та хăйсем шутласа тупнă купăспа тата унăн сассипе мухтанма пуçланă. Турă каланă: «Эсир, ахăртнех, кӳкĕртне нумайрах хурса пăрахнă», — тенĕ. Вара явăлсем хĕлĕхсене кӳкĕртпе сĕрнĕ те, сĕрме купăс чипер сассемех кăларма пуçланă.

Купăççăсенчен нумайăшне ăрăмçă теççĕ.

Ташлама улахсенче вĕренеççĕ. Ташланӑ чухне çынна Явăл алă е сенĕк çинче йăтса çӳрет теççĕ.

## 591

Сĕрме купăс калама мунчара вĕренсен лайăхрах. Сĕрме купăспа пĕрле автан илеççĕ те мунчана каяççĕ. Мунчара çур çĕрчченех лармалла. Вăл вăхăтра мунчана усал шульăш пĕр-пĕр чаплă купăсçă е ват çын сăнарĕллĕ пулса пырса кĕрет те вĕренес текен çынпа килĕшӳ тăвать. Калаçса татăлни çакна пĕлтерет: купăс калама вĕренес текен çыннăн кача пӳрнине касмалла та юн тумламĕсене усал шульăша памалла; вара вăл хăйĕн чунне çав усала панă пулать. Çапла тунă хыççăн этем пек курăнакан усал вăй сĕрме купăса илет те калама пуçлать. Кайран сĕрме купăса çынна парать, лешĕ вара тӳрех лайăх выляма пуçласа каять.

Анчах çакăн хыççăн усал шульăшран тасалма тата мунчаран тухма питĕ йывăр. Çавăнпа автана хăйĕнпе пĕрле илеççĕ. Урама тухас тесен е усал шульăш пăвасран хăрасан автана алла ярса илмелле те усал шульăш çине персе ямалла, вара мунчаран чупса тухса каймалла.

Усал шульăш автанран шутсăрах хăрать, автанпа пĕрле чухне вăл нихăш çынна та тапăнма, пăвса пăрахма пултараймасть.

# VI. ÇĔР ÇИНЧИ УПРАВЛĂХ. ЫРĂСЕМ. ĂРĂМÇĂСЕМ

*Çӳлти тата Çут тĕнчери çынсем хушшинче çӳрекен хăватсем малтан пурте турăсем пулнă, кайран вĕсем виççĕмĕш вырăна юлса ырăсем шутне куçнă. Çавăнпа нумай чухне ырăсене «турă», «шульăш», «чĕм» тени тĕл пулать. Ырăсем йышлă мар. Кепе, Пихампар, Акар, Хăрпан, Туртал, Саватар турăсем хушнипе вĕсем ырлăхпа хурлăх валеçсе çӳреççĕ, инкек-синкекрен упраççĕ, çынсене хӳтте илеççĕ. Пĕрисем этем чунне тĕрĕс мар çулпа каясран упрама тăрăшаççĕ (пирĕшти, камал). Ку ырăсем кашни çыннăн хăйне уйрăммăн пур. Вĕсем Аша (тĕрĕслĕх) юпи е хулпуççи çинче лараççĕ. Теприсем кил-йышпа хуçалăха упраççĕ (хĕртсуртсем, ийесем, йĕрĕхсем). Вĕсене тивĕçтермелли вырăна «вăйкилли» теççĕ. Ытларах чухне вăл юмăç, апăс е чĕлхеçĕ пурăнакан çĕрте кĕлетре пулнă. Ратнери çынсем чир-чĕртен, инкекрен упранас шутпа унта пырса пăтă, нухрат е урăх парне панă. Унта пир-авăртан, йывăçран-тăмран, тимĕртен тунă пуканесем, хĕреслĕ тенкĕсем, ăскамисем упраннă. Качча каякан хĕре вăйкиллинчен пĕр пуканине е амăшĕн хĕреслĕ тенкине пиллесе парса янă, çакă тăван йăх вăйĕ хĕрпе пĕрлех пытăр тенине пĕлтернĕ. Виççĕмĕш йышши ырăсем ял-йыша упранă. Вĕсем çĕр çине турăсене хăйсене чĕнсе илсе кăтартса çӳренĕ пулать. Ку ырăсене ялпа-йышпа Тӳркиллинче чӳкленĕ. Тӳркиллине мăчавăрсем, ял ваттисем пăхса тăнă. Пысăк пĕлтерĕшлисем — çĕршывпа халăха упракан хăватсем, пĕтĕм турăсемпе ырăсем. Вĕсене киреметсенче чӳкленĕ. Чӳкне эптер-элменсем, ламшарсемпе мамалесем йĕркелеççĕ. Кĕçĕн, Вăталăх, Аслă киреметсенче хăйсен тĕп туррисемпе ырррисем пулнă.*

*Аслă киреметри Мăн чӳклемесенче турăсене пуççапнипе пĕрлех Çĕр, Шыв, Çил, Вут усал-тĕселĕсене калмак каласа çырлахтарнă. Тухатмăшсем, пăскăчсем, сулуççем вăрттăн çӳренĕ экремет-эсреметсен пĕлтерĕшĕ каярахпа хаяр киреметсем çине куçса юлнă. Самана улшăннăçемĕн турăсем ырăсемпе хаярсене куçа-куçа пынă. Халăх ырă турăсене часрах манăçтарнă, хаярĕсенчен вăрах вăхăт хăраса пурăннă. Çавăнпа чăваш хайлалăхĕнче усалсемпе хаярсем турăсемпе ырăсенчен ытларах пек курăнаççĕ.*

*Ырăсемпе хаярсем пĕр ушкăнри хирĕçле вăйсем шутланаççĕ. Усалсемпе тĕселсем хăйсем хушшинче уйрăлса тăраççĕ. Ырăсен ĕçне халăх хушшинче ăрăмçăсем (апăс, юмăç, мăчавăр, ӳкĕтçĕ) туса пынă пулсан, усал-тĕселе пăскăнчăксем (тухатмăш, сулуçă, вĕрӳ-суруçăсем) пуççапса пурăннă.*

*Халĕ пӳртсенче Уша (Аша) юписем сайра тăваççĕ, кĕлетри-ампарти вăйкиллисене туй-çуй вăхăтĕнче çеç аса илеççĕ.*

*Тӳркиллисемпе киреметсен вырăнĕсем тĕп ялсенче пур çĕрте те упранса юлнă. Куçса ларнă ялсенчи çĕнĕ киреметсем маларах манăçнă е вĕсен вырăнне часавнисемпе чиркӳсем лартнă. Халапсенче çавсене пурне те палăртса хăварнă.*

## Ҫын управлăхĕ. Чун. Вилĕмсĕрлĕх. Уша юпи. Пирĕшти. Пӳлĕхҫĕ

*Чăваш халăхĕн сартăш вĕрентĕвĕнче «чун» ҫинчен каланисем пысăк вырăн йышăнаҫҫĕ. Тĕнчепе ҫынна вĕсен чунлăхĕпе виҫсе хак параҫҫĕ: чунлă е чунсăр ҫын, ырă е усал чун, таса е хура чунлă теҫҫĕ. Этеме чун кĕрет, этемĕн чунĕ тухать тетпĕр. Ку ăнлавсем калаҫура тăтăшах янăраҫҫĕ.*

*Чун — тĕнчере упранакан вилĕмсĕр «шульăш», ăшăлăх, хăтлăх. Вăл этеме ырăлатса тăрать, унăн шухăшĕсемпе туйăмĕсене, ĕҫĕсене хăйшĕн те, ҫынсемшĕн те усăллă тăват. Чунсăр ҫын тискерленсе, хаярланса каять, малашлăхсăр тăрса юлать те сивĕнет.*

*Чунсем тĕнчере ҫăлтăрсем пекех йышлă. Ача ӳтне ҫураличченех чун кĕрет, вилсен кăна тухать. Вăл ҫухалмасть: этемĕн ҫĕр ҫинчи ырă е усал ĕҫĕсене кура тĕрлĕ ҫĕре (ҫăтмаха, тамăка, йывăҫ-курăка, кайăк-кĕшĕке) куҫать. Ӳсекен, пулăх кӳрекен чĕрĕ тĕнче яланах чунлă.*

*Халăх хайлалăхĕ ĕмĕр тĕшшине, илемне, пахалăхне чун калăпăшĕпе, хăвачĕпе, хавалĕпе виҫет. Куҫа курăнман ҫав пахалăх унăн ĕҫĕсемпе шухăшĕсен вилĕмсĕрлĕхне палăртса тăрать. Ҫавăнпа аслашшĕн-кукашшĕн е асламăшĕн-кукамăшĕн чунĕ мăнукĕсене куҫни ҫинчен калаҫҫĕ.*

*Тĕн йăлипе чăвашсен ҫулталăкра 4 хутчен Ваттисене ял-йышпа пухăнса асăнмалла, несĕлсен чунĕсемпе калаҫмалла, хăйсен ĕҫне-хĕлне вĕсен ĕмĕчĕсемпе виҫсе хакламалла. Уша юпи ҫумне, Тӳркĕллине е Киреметри пурнăҫ йывăҫĕ ҫине пир-авăр чалхисем ҫакса хунине чун парни теҫҫĕ. Ачалла е ҫамрăкла вилнисен чунĕсем ҫав парнесене курсан кайăк пулса юрлаҫҫĕ-мĕн.*

*Чун куҫа курăнмасть. Вăл — таса шульăш, чĕмлĕх, тăшман пусмăрлама пултарайман пахалăх.*

### 592

Этем, выльăх-чĕрлĕх, йывăҫ-курăк — ҫĕр ҫинче ӳсекенни, куҫса ҫӳрекенни пурте, вăл шутра ҫĕр хăй те — чунлă. Хăй ăшĕнче пурнăҫ пур кирек мĕнле пулăм та чунлă, хăй ăшĕнче пурнăҫ ҫук япаласем вара — пӳртҫурт, касса пăрахнă йывăҫ, ҫулса тăкнă курăк тата ытти пурте — чунсăр. «Йывăҫа пустай ан сусăрт — унăн та чунĕ пур, вăл та хурлăх курать», — тенĕ.

Чĕрĕ йывăҫ хуппине сĕвекен ҫынна курсан чăваш ăна тӳрех ҫапла каласа чарать: «Йывăҫăн хуппине ма вистерĕн, хăвăн тиррӳне вистесен лайăх-и?» Йывăҫ асапĕсем этем асапĕсемпе танах тесе шутлать чăваш. Ҫапла калани те пур: «Хурăнăн шывне ан ĕҫ, вăл унăн юнĕ». Йывăҫ-курăк — чĕрĕ чунлă, вĕсен хăйсен пурнăҫĕ пур, ҫавăнпа вĕсене ыт ахальтен, нуша ҫук ҫинчех амантни, касни — ҫылăх.

Йывăҫсене чăваш чĕр чунĕсемпе этем паллисене панă. Йывăҫсем ыррисем, хаяррисем, макăраканнисем тата ыттисем те пулаҫҫĕ. Усал йывăҫ каснă чухне мĕнле те пулин суран тăвать; ҫынна хăй айне тăвать-и е йывăҫ ҫине ланкăнать. Йăваш чунлă йывăҫ лайăх ӳкет. Хăш йывăҫ макăрса ӳкет.

Ӳсен-тăрансемпе курăксем, чечексем чунлă та пурнăҫлă, вĕсен те лайăх енĕсем пур; вĕсем савăнма, хурланма пултараҫҫĕ. «Ҫумăр ҫурĕ те, курăксем хĕпĕртерĕҫ» е «Ҫумăр хыҫҫăн курăксем савăнаҫҫĕ», — теҫҫĕ.

Капла та калаҫҫĕ: «Ҫуркунне ҫĕр пĕтĕ. Ăна патакпа е урăх мĕнпе те

пулин çапни, ĕç хатĕрĕсемпе хускатни çылăх пулать. Çĕр — чĕрĕ, унăн та чунĕ пур».

«Чун» сăмахпа чăваш икĕ пĕлтерĕшлĕ усă курать. Пĕринче пурнăçа «чун» тесе калать, тепринче чăнласах вилĕмсĕр чуна «чун» тесе калать.

Çĕр çинче нимĕн те ĕмĕрлĕх мар. Выльăх-чĕрлĕх вилет, ӳсен-тăранăн та пурнăçĕ татăлать. Вĕсен чунĕсем вилĕмсĕр мар. Йывăçпа курăк чунлă тенĕ чухне чăваш «чун» сăмахпа вĕсем чĕрĕ пулнине палăртать.

Этем чунĕ апла мар. Этем чунĕ вилĕмсĕр, вăл Леш тĕнчере те пурăнать.

## 593

Çын вилсен ун чунĕ тухать, анчах вăл инçе каймасть. Виçĕ кунтан ăна ăсатса яраççĕ.

Тăваттăмĕш кунне этем чунĕ Чантăрвар кĕперĕ урлă каçать. Унта Турă чуна тараса çине хурса тайтарса пăхать.

Ырă ĕçсем нумай пулсан чун тӳпене çĕкленет. Ăна çăтмах çулĕпе ăсатаççĕ.

Кĕпер çинче Турăпа пĕрлех явăлсем чукмарпа тăраççĕ. Вĕсем усал ĕçсем туса тултарнă этем чунне туртса çапаççĕ. Лешĕ вара аялалла вăркăнса анать. Тĕнче усалĕ пулнă этем чунĕ кĕпер çинченех тамăк хуранне лекет.

Шуйттансем ăна вĕри шывра пăтратма пуçлаççĕ. Кĕпе çунă чухнехи пек, çылăхсене тăрă шыва кăлараççĕ вĕсем. Хăйсем такмак калаççĕ.

— Ваттисен сăмахне пăсса усал ĕçсем тунă ухмах пуçу ислентĕр, — теççĕ.

— Çĕрпе шыва хисеплемен хытă чуну çемçелтĕр, — теççĕ.

— Тĕрĕс çынсене сутса, улталаса, суеçтерсе çӳренĕ хура чĕлхӳ шуралтăр, — теççĕ.

— Вăрласа, çаратса пурăннă кукăр аллу тӳрелтĕр, — теççĕ.

— Чараксăр пуклак чĕлхӳ çемçелтĕр, — теççĕ.

— Çăткăн куçу çуталтăр, — теççĕ.

— Нушари çынна пулăшман суккăр чĕрӳ херелтĕр, — теççĕ.

— Шăннă çынна ăшă пӳрте кĕртмен сивĕ чĕрӳ вĕрипе ирĕлтĕр, — теççĕ.

— Усал шухăш шухăшлани, усал ĕç туни, усал сăмах калани Турăпа этеме кирлĕ мар, пирĕн хурантах пултăр, — теççĕ.

## 594

Çын çураличчен унăн чунĕ Турă патĕнче пурăнать. Çынна куçсан вăл этем сăнне йышăнать. Çын чунĕ ӳтрен тухса кайсан чун каялла час-часах таврăнать, итлеменнисене айăплама та пултарать. Хăй вилĕмĕпе вилмен çын пирки чăвашсем çапла калаççĕ: «Вăл хăй вилнĕ çĕрте час-часах çӳрет», — теççĕ.

## 595

Çын чунне çуралнă чухне Турă парать, вăл вилсен те Турă патнех каять теççĕ. Чăвашсем выльăх-чĕрлĕхĕн те чунĕ пур, анчах çын чунĕн çурри кăна теççĕ.

Эрех ĕçсе, çакăнса вилекенсен чунĕсем Шуйттан аллине каять теççĕ.

## 596

Чун хапи питĕ пĕчĕк. Вăл ăстаканри шывра ишсе çӳреме пултарать. Çавăнпа чăвашсем çын вилсен пуç вĕçне пысăк мар савăта шыв тултарса лартаççĕ. Турă умне каяс умĕн çав шывра чун çăвăнса тухать.

## 597

Чун — çын чĕрĕлĕхĕ, ăс-тăнĕ. Турă панă хăват, ăна Турă вырăнне шутланă. Чун йышĕсем: чун çуратакан Турă, чун паракан Турă, чун кĕртекен Турă, чун илекен Турă.

## 598

Вилсен чун кăçта кайса кĕрет? Пĕлĕт çинче çӳреççĕ тет ушкăнь-ушкăньпе. Кĕлтумасăр вилнине пĕлĕт çине ухтармаççĕ тет, çĕр çинче çапкаланса çӳрет тет. Çӳлти патшалăх 7 хут пĕлĕт çинче тет.

## 599

Ырă çыннăн чунĕ пĕлĕт çине каять. Усал çыннăн чунне усалсем вилнĕ чухнех сыхласа тăраççĕ тет, вара чун тухнă пеккинех лаша туса тамăка илсе каяççĕ тет.

## 600

Пирĕн кунта калаçатчĕç ватă çынсем: çын чунĕ тухсан каллах çуралакан ача ăшне кĕрет. Тата калаçаççĕ: питĕ пысăк çылăх тунă çыннăн чунĕ лаша пулса çӳрет теççĕ.

## 601

Чăвашсем чуна пĕчĕк кайăк пек теççĕ.

Ĕлĕк пĕр çыннăн пукан çинче ларнă чухнех ăшĕнче шанкăрт! тенĕ сасă илтĕнчĕ тет те, çын çавăнтах ӳксе вилчĕ тет. Ăшĕнче илтĕннĕ сассипе чĕри татăлнă, çавăнпа вилнĕ вăл теççĕ. Вăл ӳксен унăн ăшĕнчен шап-шур шăна тухрĕ тет те çӳлелле хăпарса кайрĕ тет. Çав шăнана чăвашсем чун пулнă теççĕ.

Тата чуна вĕсем кайăк пулса киле килнине те калаççĕ. Пĕр куккук пĕр çыннăн алăк юпи çине ларса авăтрĕ тет. Çав çыннăн унччен анчах ачи вилнĕччĕ тет. Çавăнпа çав куккука ача чунĕ хырăмĕ выçса килнĕ теççĕ.

## 602

Пĕр тимĕрçĕ çĕрле ĕçленĕ чухне пĕр улпут 3 лашапа пычĕ тет те: «Лаша таханласа* пар, — тесе калать тет, — мĕн чул илен, çавăн чул парап», — тесе каларĕ тет. Ну хай таханлама тапратрĕ тет тимĕрçĕ. Лашасенĕн куçĕнчен куççуль тухать тет, вара тата чĕрнинчен юн тухрĕ тет, ку тимĕрçĕ шалт тĕлĕнсех кайрĕ тет. Улпучĕ: «Эпĕ çичас** пĕр çĕре кайса килем, эсĕ

* Таканласа.
** Халех.

таханласа пĕтер унччен», — тесе каларĕ тет те, хай улпут карĕ тет. Ку тимĕрçĕ таханлать. Таханласа пĕтерсен лашисем çын пек макăрса ячĕçĕ тет. Хай тимĕрçĕ аптраса ыйтрĕ тет: «Эсир капла макратăр, çын мар пулĕ те эсир», — тесе каларĕ тет. Хай лашасем этем пек чĕлхе хушрĕçĕ тет: «Эпир çынах пулнă та хамăра хамăр пĕтертĕмĕр». — «Ма тата?» — тесе ыйтнă тимĕрçĕ. Хай лашасем каланă: «Эпир иксĕмĕр шыва сиксе вилтĕмĕр, ку пĕри çакăнса вилнĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн чуна Усал лаша туса çӳрет ĕмĕр-ĕмĕрех, нихçан та çăлнас çукка ĕнтĕ эпир», — тесе каларĕçĕ тет. Хай улпучĕ çитрĕ тет, тимĕрçе 3 лаша таханланăшăн 5 тенкĕ парать тет. Тимĕрçĕ калать тет: «Çĕрле укçа илме закон çук пире», — терĕ тет.

## 603

Этем чунĕ пĕччен çӳремест, вăл яланах ӳт-пӳпе е ĕмĕлкепе пĕр пулса пурăнать. Кун пирки çапла калани пур. Пĕр чăвашăн ватă ашшĕ вилес пек выртнă. Вĕсен пĕр картарах пĕр-пĕринчен уйрăм — урамалла пăхса икĕ пӳрт ларнă. Вĕсем хушшинче пĕчĕк картиш пулнă. Ку чăваш ашшĕ-амăшĕнчен уйрăм пурăннă: ашшĕпе амăшĕ пĕр çуртра, ку хăйĕн йышĕпе тепринче.

Пĕринче чирлĕ чăваш ывăлĕ каçхине килĕнчен тухать те ашшĕне кĕрсе пăхам-ха тесе ун çурчĕ патнелле утать. Кил картинче мĕн курах каять!

Темиçе самант кăна маларах вырăн çинче вилес пек выртнă ашшĕ ним пулман пек питĕ хастаррăн пусса сарайĕнчен хăйĕн пӳрчĕ патнелле утать. Ывăлĕ çине вăл пăхмасть те, асăрхамасть те. Çакна курнипе аптраса ӳкнĕ ывăлĕ пĕр сăмах та шарламасăр пăрăнса çул парать, пӳртне кĕртсе ярать, ашшĕ хыççăн хăй те кĕрет. Курать ывăлĕ: ашшĕ вырăн çинче сывламасăр выртать, вилсе кайнă. Амăшĕнчен ыйтать: «Мĕншĕн çапла йывăр çынна тула кăлартăр?» Амăшĕ калать: «Ашшĕ тула пачах та тухман, акă халĕ кăна унăн чунĕ тухрĕ», — тенĕ.

Картишĕнче курăнни ваттин чунĕ е унăн вилĕмĕ пулнă.

Чăвашсенчен çакăн пек каланисене час-часах илтме пулать. Пĕрисем: «Атте мĕлки карта патнелле кайрĕ», тепри тата: «Эпĕ арăма шап-шурă тумтирпе карта патĕнче тăнине куртăм», — теççĕ.

Çапла вара, чăвашсем каланă тăрăх, этем вилсен унăн чунĕ ĕмĕлке е шульăш пулса юлать.

## 604

Чирик Кошкăнчи вырăс Якор Васалийĕн Киркорийĕ çапла каларĕ: «Пирĕн ати вилсен пӳрт çаралсах йолчĕ, — тет. — Пĕрре эпир, ачасем, пӳртре ларнă çĕре хора йытă кĕчĕ, — тет. — Хăй ни вĕрмерĕ, ни çыртмарĕ, тохса карĕ часрах. Çав йытă ати чонĕ полнă. Пире корма пынă», — тет.

## 605

Этеме ĕмĕтлĕ пултăр тенĕ, Шуйттана ĕмĕтсĕр пултăр тенĕ.

Пĕррехинче пĕр çын пахча (карти) тытать тет, вăта юписене çапнă ыраш кĕлти уламĕпе çыхать тет. Турă иртсе пырать тет те ыйтать тет:

— Ма апла тăватăн? Капла çыххи часах çĕрсе таталать, — тесе калать тет.

— Ман пурнасси те тепӗр ҫул анчах, унччен тӳсӗ, — тесе калать тет леш. Малтан этем хӑй хӑҫан вилессе пӗлсе тӑнӑ тет. Турӑ вара малашне этеме хӑй хӑҫан вилессе пӗлмелле мар тунӑ тет.

## 606

Вилӗм ӗлӗк куҫа курӑннӑ, халӗ кӑна курӑнса ҫӳремест. Пӗр ҫын патне Вилӗм килнӗ.

— Хатӗрлен, чунна илсе каятӑп, — тесе калать тет.

— Ҫук, пымастӑп-ха, эпӗ хатӗр мар, ыран килӗн, — тесе калать тет.

Вара Вилӗм тепӗр кунне килсе ҫитет, ку кунне те ыран килӗн тесе тавӑрса ярать ку ҫын.

Виҫҫӗмӗш кунне Вилӗм килсе ҫитет.

— Паян вара сана чӑннипех илсе каятӑп, — тет Вилӗм.

Ҫав вӑхӑтра ҫын Вилӗме ярса тытать те тӗк тултарнӑ пысӑк хутаҫа чӑмтарать, хутаҫҫине ҫыхсах лартать. Тӗк ӑшӗнчен Вилӗм нимле те тухаймарӗ тет. Ҫавӑнпа та вӑл ҫын куҫне курӑнмасть тет. Курӑнмасӑрах ҫын патне пырса ҫитет.

## 607

Пурӑннӑ тет пӗр аякри ялта пӗр карчӑк. Карчӑкӗ питӗ ӗҫчен те кӑмаллӑ, ырӑскер пулнӑ тет. Карчӑк ватӑлса пынӑ пулин те Чунӗ ҫамрӑк пулнӑ, хӑйне ҫӑмӑл туйнӑ-ха. Ҫак яла пӗррехинче Вилӗм пырса ҫитет, пур ватӑ ҫынсене кунран-кун шӑлса кайма пуҫлать. Хальхинче Вилӗм карчӑк патне пырса шаккать. Карчӑк хӑраса ӳкет, анчах тавҫӑрса илсе ҫийӗнчех ҫапла калать: «Паян ан кил-ха ман пата, паян эпӗ ерҫейместӗп, Турра кӗлтӑватӑп, ҫылӑхсене каҫарттаратӑп, санпа пӗрле пырсан тамӑк хуранне кӗмелле ан пултӑр. Ыран мар виҫмине кил», — тет. «Юрать эппин», — тет те Вилӗм каять. Карчӑк Вилӗм киличчен ӑҫта пытанас-ши тесе пӑшӑрханать. Тем те шухӑшласа пӑхать, шухӑшласа тупаймасть. Пӗр кунӗ сисмесӗрех иртет. Виҫҫӗмӗш кун ирхине ирех карчӑк хӑйӗн кӗлетре тырӑ пуррине аса илет, тырӑ ӑшне кӗрсе выртать. «Ҫук-ха, кунтан вӑл мана тупать», — тесе тулли пыл пичкине кӗрсе ларать, каллех тупасран хӑранипе унтан та тухать. Пӳрте кӗрсе тӳшек ӑшне кӗрсе выртать. Пӗтӗм тӳшек ӑшӗнчи мамӑкӗ ун пыллӑ кӗлетки ҫумне ҫыпӑҫса ларать. Карчӑка курсанах хӑраса каймалла. «Кунтан та тупать пуль», — тесе карчӑк тухать те, ҫав вӑхӑтра алӑка шаккани илтӗнет. Вилӗм кӑшкӑрать: «Карчӑк, уҫ алӑкна»! — тет. Карчӑк алӑка уҫмасть, чӗнмест. Вилӗм татах кӑшкӑрать, карчӑк татах чӗнмест.

Вара Вилӗм алӑка ҫӗмӗрсех кӗрет те сухӑрса каялла тухса тарать. Вӑл карчӑка курсанах хӑраса, карчӑка паллаймасӑр тухса тарать, ӑслӑ карчӑк ҫакна сиссе Вилӗме ялтан хӑвалама тытӑнать. Вилӗмӗ хӑраса ӳкнипе ялтан тухсах тарать. Хытӑ хӑранипе ку яла урӑх пымасть вӑл. Ҫавӑн хыҫҫӑн ялти ҫынсем те сывах пурӑнаҫҫӗ тет. Карчӑк та халӗ те ӗҫлесе пурӑнать тет.

## 608

Ҫын чунӗ тухассине акӑ мӗнле пӗлме пулать. Пӗр стакан илмелле те шыв ярса пуҫ вӗҫне лартмалла. Ҫав шыва сӑнама пуҫлас пулать. Енчен те шыв чӳхенме пуҫларӗ пулсан ҫын вилет, ӗмӗрӗ татӑлать, чунӗ тухать.

609

Чун кайăкĕ пăрчăкан евĕрлĕ: унăн майĕ сарă, çуначĕсем кăвак, хӳри пăрчăканăннинчен кĕскерех. Чун кайăкĕсем çăвасем патĕнче ытларах пулаççĕ тата çын çӳремен çулсем тăрăх вĕçеççĕ.

Çын пынă чухне ун тавра хум евĕр хумханса явăнаççĕ.

## Çурт-йĕрпе пурлăх-ырлăх управлăхĕ. Хĕртсурт. Ийесем

*Этем хăй таврине чĕрĕ сăнарлă курнă. Ун авалхи шучĕпе, кил хуçалăхĕнче пӳртĕн, кĕлетĕн, витен, ытти хуралтăсен управçă-ыррисем пурăннă. Пӳртçурт управçи — Хĕртсурт. Вăл пӳртре кăмака çинче е кăмака хыçĕнче ларать. Таса тумлă, тирпейлĕ. Шӳлкемепе, сурпанпа. Ĕçсĕр тăмасть. Кĕнчеле арлать, кĕпе-тум касса çĕлет, чашăк-тирĕк çăвать, урай шăлать, тасатать. Ĕçчен хĕрупраç тесех каламалла чăвашсен хĕртсуртне.*

*Хĕртсурта чысласа пуш уйăхĕнче пăтă пĕçернĕ. Вара ăна кил-çурта малашне те тирпейлĕ тытма, вут-кăвартан, вăр-хурахран упрама, çилтен-шывран сыхлама ыйтнă. Каяс-тăвас пулсан е килсе кĕрсен хĕртсурта сасăпах саламланă. Ĕçкĕ-çикĕрен килсен «Тавси, Хĕртсурт!» тесе кучченеçпе хăналанă.*

*Килти выльăх-чĕрлĕхе упракан хăвата пĕр чухне Хĕртсурт, теприне Ийе е Пихампар хăй тенĕ.*

*Ийе — йышлă ушкăнлă ырă. Вăл тахçан Киреметпе Йĕрĕх пекех çӳлти турăсемпе пĕрле çӳренĕ. Кайран вĕсене Турă çĕр çине пăрахнă та, кам ăçта лекнĕ çавăнта вырнаçса пĕтнĕ. Ийесен вырăнĕ — сакай, урай, пусма ай. Ийесем килпе картишĕнче (мунчара, витере, пахчара) анчах мар, уйра, вăрманта, шывра, шурлăхра — мĕнпур ура айĕнчи тĕнчере пурăнаççĕ. Ийесем питĕ тĕрлĕ: Арман ийи, Çул ийи, Мул ийи, Нӳхреп ийи, Çăл ийи... Вĕсем пурте кăштах парне кĕтеççĕ, хăйсене манмасăр хисепленине юратаççĕ. Çиллентерсен, шăнтсан, итлемесен, тирпей-тасалăха пăссан чир-чĕр яма пултараççĕ. Вара «ийе тытнă», «ийе чăмланă» теççĕ. Урай таврашĕнчи ийе пĕчĕк ачапăчана час-часах «тытать». «Ачана ийе улăштарса кайнă», — теççĕ вара.*

*Ийесене чӳк туман. Вĕсен чир-чĕрĕнчен сыхланма, им-юмçă каланисене пурнăçлама хушнă.*

## Хĕртсурт

610

Чăвашсем Хĕртсуртсăр кил пулмасть теççĕ. Хĕртсурт пулмасан телей те пулмасть. Хĕртсурт вăрçă тавраша юратмасть тет. Хĕртсурта пилĕк çулта пĕрре чӳклеççĕ.

...Вăл хăй шур тумтирлĕ, вăрăм çӳçлĕ, тимĕр шăллă тет. Ир еннелле Хĕртсурт арланине илтме пулать. Кĕнчелине хăех илсе каять тет те ăçта та пулсан пытарса хурса каллех кăмака çине килсе ларать тет. Ĕçке-çике кайса ӳсĕрĕлсе килсен çапла калаççĕ вара: «Тавсйе, Хĕртсурт, ĕçсе ӳсĕрĕлсе килтĕм, ан çилленех», — теççĕ. Ют ялтан кучченеç парса ярсан чăн малтан Хĕртсурт валли кăмака çине ывăтаççĕ. Хĕртсурта авал пит хисеплесе пурăннă.

## 611

Килте Хĕртсорт порăнать. Вăл хĕртен полнă теççĕ. Вăл хуçисене ĕçлеме полăшать. Хĕртсорт полăшман çыннăн ĕçĕ ăнмасть. Вăл кирек мĕн тума та полăшать, нимĕнрен ытла хĕрарăмсене хĕлле кăнчала арлама нумай полăшать. Хĕртсорт полăшнă хĕрарăм хĕл каçиччен тем чолĕ кăнчала арласа толтарма полтарать. Хĕртсорт полăшман хĕрарăм нимĕн чолĕ те арлимасть.

## 612

Тата кашни кил-çурта пăхса сыхласа тăраканни пĕр турă пур, ăна Хĕртсурт тенĕ. Çак турра, çиме тесе, сайра хутра кăмака умне пăтă лартнă. Пăтă лартнă чухне кил-çурта пит лайăх тасатнă, кил хуçисем шур кĕпейĕм тăхăннă. Çакна Хĕртсурт пăтти тенĕ.

## 613

Пӳртре Хĕртсурт пурăнать. Пӳрт ăш-чиккине лайăх усратăр тесе чăвашсем уна пăтăпа чӳклеççĕ. Вĕсем Хĕртсурта кăнтăрла çынсенчен хăраса пăтă çиме пымаç теççĕ. Çавăнпа каç пулсан пĕр чашăк çине антарса, сĕтел çине лартса унта ирчченех хăвараççĕ. Вара Хĕртсурт çĕрле пырса пăтă çисе каять.

## 614

Хĕртсурт кил сыхлать, кăнтăрла арлать, кашни килте пур: хăш-хăш çын çĕрле тĕттĕм çĕрте шур кĕпепе хĕрарăм кăнчала арланине курать теççĕ; çын курнине сиссенех куçран çухалать теççĕ, кăмака айне кĕрсе каять теççĕ. Сăра ĕçсе таврăнсан чăвашсем пӳрте кĕрсенех: «Хĕртсурт, тавсйа», — теççĕ, ашшĕ-амăшĕ вилнĕ пулсан та çапла калаççĕ. Пирĕн килтисем эпĕ пĕчĕк чух карта пăтти, ака пăтти, Хĕртсурт пăтти пĕçеретчĕç. Хĕртсурт пăттине çĕрле хăй çутсан пĕçеретчĕç те выртас чух çиетчĕç, пĕр чашăкпа кăмакана е кăмака чĕрçи çине пăтă лартатчĕç, пăтă çине кашăк хуратчĕç. Ирхине эпир тăрсан пăхаттăмăр Хĕртсурт пăтта çини-ха тесе, мĕн чул та пулин, пĕр-ик кашăк та пулсан. Хăш чухне пĕр-ик кашăк пăтă ăсса çинĕ пулаччĕ: ăна аннесем-асаттесем юри ăсса илетчĕç курнать пиртен вăрттăн пире хаваслантарасшăн, эпир вара Хĕртсурт çинĕ тесе хавасланаттăмăр ирхине тăрсан.

## 615

Хĕртсурт кашни пӳртрех пур, вăл кăмака çинче пурăнать тетчĕç. Хĕртсурта пăтă чӳклетчĕç. Пирĕн анне ĕçкĕрен таврăнсан пӳрте кĕрсенех: «Хĕртсурт, тавссе, ачам-пăчам, тавссе», — тесе чĕнетчĕ.

## 616

Пĕрре ĕçме кайма хатĕрленетĕп, вăрçă хыççăн-ха вăл, кучченеçе çӳхи, кукăль чикрĕм те кайрăм. Килте никам та юлмарĕ. Ĕçкĕрен çур çĕр иртсен таврăнтăм, алăк уçса пӳрте кĕрсен мана хирĕç квас чĕресĕ вăркăнса килчĕ, квас тĕпĕ çамкаран пырса тиврĕ. Хам хăраса кайрăм, ним тума та пĕлместĕп.

«Тăмсаккай, ара, эпĕ Хĕртсурта парса хăварман вĕт», — тесе асăнса патăм та, çавăнтанпа нихăçан ун пекки пулмасть. Кашнинчех эпĕ халь, таçта каяс пулсан, яланах Хĕртсурта парса хăваратăп.

617

Кирек кам килĕшĕнче* те Хĕртсурт пур теççĕ. Хĕртсурт кăмака хыçĕнче пулсан килте пурăнас килет теççĕ, çавăнпа кучченеç илсе килсен ăна малтан пăрахса параççĕ. Хĕртсурт уйра пулсан уйра пурăнас килет теççĕ, çавăнпа тыр вырса тавăраннă чух пĕр çурлине тыр кутнех пăрахса хăвараççĕ, унпа Хĕртсурт вырать теççĕ.

618

Çулла уя тырă вырма тухаччен Хĕртсорт пĕр уйăх малтан тухать теççĕ.

619

Хĕртсурт кашни килтех пур. Ăна тепĕр майлă кил хуралçи теççĕ.

Килте хĕрарăмсем ачисене пĕччен хăварнă чухне яланах Хĕртсурта пăхма хушса хăвараççĕ. Çын килте нихçан та пĕччен юлмасть. Вăл яланах Хĕртсуртпа пĕрле. Çавăнпа аннесем пире килте пĕччен чухне ан хăрăр теççĕ.

620

Хĕртсурт — турă. Пӳртре пурăнакан, пӳрте сыхлакан турă. Вут-кăвара пăхакан турă. Хĕртсурт йышĕ: Хĕртсурт амăшĕ, ашшĕ, ачи-пăчи. Хĕртсурт турра çулталăкра иккĕ асăнаççĕ: кĕркунне тата хĕлле.

Хĕртсуртсăр кил пулмасть теççĕ. Хĕртсурт пулмасан телей те пулмасть тет. Вăл килте çапăçнине юратмасть тет. Киле хăнасем килсен Хĕртсурт валли пӳртĕн тăвата кĕтессине кучченеç хумалла.

621

Çурта сыхлакан турăсенчен пĕри Пирĕшти пулсан, тепĕри — Хĕртсурт. Вăл çурта сыхлать. Кунсăр пуçне вăл хĕрарăм сăнарлă. Çурт унсăр пулмасть тет. Унсăр çурта темле инкек-синкек те пулма пултарать. Çурта вăл пăрахни те пулнă тет. Ăна пăрахсан та каяллах таврăнать тет вăл. Ун çинчен пĕлме питех кирлĕ мар. Ку вăл каллех инкек-синкек патне çитерет.

622

Хĕртсурт пӳртре пурăнать тет. Кăмака çинче кĕнчеле арласа ларать тет. Вăрăм çӳçне тураса ларать тет. Вăл кĕнчеле арлани пӳртри çынсене те илтĕнет тет. Хĕртсурт пӳрте усал ересрен сыхлать тет.

---

* Кил ăшĕнче.

## 623

Кашни çул хĕлле пирĕн Хĕртсурт пăтти чӳклеççĕ. Хĕртсурта ал ĕçне тума пулăшать теççĕ. Тата кил-йышне пăхса усрать теççĕ. Пӳртре пурте çывăрса пĕтсен çав Хĕртсурт кăмака çинчен анать тет те кăмака умĕнче шап-шурă кĕпепе кĕнчеле арласа ларать тет.

Пĕрре мана Марăшки* амăшĕ ак çапла каласа кăтартрĕ: «Пĕрре çур çĕр вăхăтĕнче вăрантăм та пăхса выртатăп тет ĕнтĕ. Выртсан-выртсан тем çӳç-пуç вирелле тăчĕ кайрĕ. Хай эпĕ эсрел килет пуль тесе часрах пуç вĕçĕнчен сăхмана туртса илетĕп те пуç çинчен пĕркенсе выртатăп. (Чăвашсем калаççĕ, Эсрел çын патне пыма тапратсан çынна катаранах темĕнле хăратса пăрахать теççĕ.) Пăшкаса выртатăп сăхман айĕнче, çук, ыйхă килмест. Чим-ха, сăхмана кăшт уçса пăхам, мĕн пулать те килет: так-так тутарнă сасă илтĕнет-çке, ку, чăнах, эсрел алăка таккамасть-и-ха? Хай сăхмана пуç çинчен сирсе яратăп та, хăлхана йĕке шатăртатнă сасă кĕрех кайрĕ. Пуçа çĕклесе пăхатăп та, пĕр шап-шурă кĕпеллĕ хĕр кăмака чĕрçинче** кăнчала арласа ларать», — терĕ.

— Кинемей, вăл камччĕ, палларăн-и? — терĕм эпĕ.

— Вăл, ывăлăм, Хĕртсурт пулать, — терĕ.

— Ăна тата пирĕн анне курнине-тунине илтмен-çке, — терĕм.

— Ывăлăм, эс чипер калаçкала, ухмах, Хĕртсурта юмăç карчăксем анчах кураççĕ, — терĕ. Унтан эпĕ тата темĕскер çинчен ыйтрăм та, вăл калаçма пăрахрĕ.

Хĕртсурт пăттине кирек хăçан та çĕрле чӳклеççĕ. Тĕттĕм пула пуçласан пирвай çемьере миçе çын, çавăн чухне кашни çын ятне асăнса пĕрер тутлă пашалу тăваççĕ. Юлашки чустинчен тепĕр вăтам пашалу тăваççĕ. Ытлашши пашалу тумасан çемьере нихăçан та çын хутшăнмасть теççĕ. Унтан пăри кĕрпинчен пĕр пĕчĕк хуран пăтă пĕçереççĕ. Чӳклеме вăхăт çите пуçласан пурте шап-шур кĕпе-йĕм тăхăнаççĕ. Кăмака умĕнчи сак çине вырăн сарса хураççĕ. Пĕр-пĕр ют çын çак Хĕртсурт пăттине чӳклес каç хваттере-мĕне кĕрсе выртсан ăна часрах апат çитерсе çывăратаççĕ. Хĕртсурт пăттине чӳкленине çын курсассăн çырлахмасть теççĕ. Пурте хатĕрленсе çитсен кăмака умне сĕтел лартаççĕ, сĕтел çине пĕр чашăк пăтă антарса лартаççĕ. Унтан çав антарса лартнă пăтă çине пĕр услам çăвĕ хураççĕ, йĕри-тавра чашăк хĕррипе кашăксем тăрăнтарса тухаççĕ. Кашăккисене те шутлă хураççĕ: миçе пашалу пĕçернĕ, çавăн чухлĕ хураççĕ. Çапла пурне те хатĕрлесе çитерсен кил хуçи сĕтел умне тăрать те сулахай хул хушшине пĕр шур çĕлĕк хĕстерет, çине шупăр (шурă пиртен çĕленĕ сăхман) тăхăнать те кăмака еннелле пăхса ак çапла чӳклет:

«Çырлах, Хĕртсурт, Хĕртсурт амăшĕ, эпир сана тав тăватпăр, сана пуççапатпăр, пире килĕшпе чипер кĕрлесе пурăнма пар, çырлах! (Кунта кăмакана пурте ӳксе пуççапаççĕ.) Çырлах, Хĕртсурт, эс пире пăхса усракан, пире ал ĕçĕсене тума пулăшакан, пирĕн уйри тырра-пулла çилтентăвăлтан, пăртан-çăмăртан сыхласа усракан, сана пуççапатпăр, сана витĕнетпĕр, ан пăрахсам пире, çырлах-çырлах! Амĕн, çырлах! (Кунта пурте кăмака умне ӳксе пуççапаççĕ.) Çырлах, Хĕртсурт, сана тата виçлĕ выльăхчĕрлĕхшĕн, çитлĕ тырă-пулăшăн пуç çапатпăр, ачам-пăчамшăн пуç-

* Марăшки — юмăç карчăкĕ. — *Авт. асăрхаттарни.*

** Умĕнче.

çапатпăр, çырлах пире, сана сам çатса сам илетпĕр. Амĕн, çырлах. Амĕн, çырлах! Чипер ĕçсе-çисе кай», — тет те, пурте тата юлашки хут ӳксе пуççапаççĕ.

Çапла чӳклесе пĕтерсен сĕтеле кăмака умĕнчен илсе вырăн умне лартаççĕ. Унта вара пурте ачи-пăчипе çав пăтта пашалупа çиеççĕ. Çисе тăрансассăн вылтаççĕ те çывăраççĕ, пăттине, пашалусене тата кашăккисене пурне те сĕтел çинех хăвараççĕ. Чӳк чӳклесен сĕтел çине апат хăвармасан чӳк çырлахмасть теççĕ. Ирхине тăрсассăн çав пăтта тепĕр хут çиеççĕ те юлашкине пĕр пĕчĕк чĕрес çине тултарса сакайне кĕртсе çакаççĕ. Çав юлашки пăтта сакайне кĕртсе çакмасан тепĕр çав вăхăтчен килĕшре пĕри-пĕри вилет теççĕ.

## 624

Кашни çыннăн кил-суртĕнче кил илемне сыхлакан Хĕртсурт пур. Çав Хĕртсурт ача та пăхать тет, килти ытти ĕççене те ĕçлет тет. Вăл хăй çынсен куçне курăнмасть тет.

Килте тирпей, йĕрке çук пулсан Хĕртсурт тухса тарать тет. Çак Хĕртсурта пирĕн асаннен амăшĕ çăм арласа ларнă чухне йĕке çаврăнттарнине те, урай шăлнине те курнă тет.

Хĕртсурт чăвашсен ырă турри, вăл кил вучахне упракан турă.

## 625

Пĕррехинче манăн ир-ирех тăмаллаччĕ. Вăратма каçма кӳршĕ хĕрарăмне каларăм. Выртса çывăртăм вара хам лăпкăн. Сасартăк мана: «Укçине, тăр ĕнтĕ, ĕçе каймалла», — терĕ такам. Эпĕ куçа уçрăм. Пăхатăп — никам та çук пӳртре. Тепĕр пĕртакран кӳршĕ арăмĕ каçрĕ. Эпĕ ăна: «Мана тăратма килмен-и-ха?» — тетĕп. «Çук», — тет леш хайхи. Ку сасă ĕнтĕ кил-çурт туррин, Хĕртсурт сасси пулнă пулмалла.

## 626

Тимахви качча хĕллехи уйăхлă каç улахран киле таврăннă. Вăхăт çур çĕр тĕлĕ пулнă. Пӳрте кĕрсен тĕпелти сак çинче Хĕртсурт кĕнчеле арласа ларнине курнă. Тимахви Хĕртсуртран çапла ыйтнă:

— Манăн ача-пăчасене лайăх пăхса усрăн-и?

— Ху тӳрĕ çын пулсан лайăх пăхса усрăп, — тенĕ Хĕртсурт. Хăй çавăнтах сухалнă.

Çакăн хыççăн Тимахви хăйĕн ĕмĕрне тӳрĕ пурăнса ирттернĕ. Авланса ача-пăчаллă пулать. Ачисем пурте сывă, тĕрĕс çитĕннĕ тет.

## 627

Турăсем ыррисем тата усаллисем пулаççĕ. Ырă турăсен шутне Хĕртсурт кĕрет. Вăл ытларах хĕрарăма пулăшать тет. Вăл кил-çурта тытса тăракан вăй тет. Вăл кам та пулин килĕшмесен тухса каять тет.

Качча тухнă хĕрĕн Хĕртсурта кучченеç памалла тет. Унăн шухăшĕ: мĕнле те пулин лайăх кил-çурта йĕркелесе пырасси. Хĕртсурт хура куçлă тет. Шапшурă тумпа тет.

## 628

Хӗртсурт ҫӗрле кӗнчеле арлать тет. Вӑл чи ӗҫчен ҫыннӑнне тата хӑй юратнӑ ҫыннӑнне кӑна арлать тет.

Пирӗн кӳршӗ мӑнаккан кӗнчелине кашнинчех арлать тет. Ҫиппи питӗ ҫинҫе те яка, пурҫӑн ҫип пек пулать тет. Каҫхине вӑл шӑнкӑр-шӑнкӑр сас кӑларать тет. Пӗрре курнӑ ӑна, вӑл шап-шурӑ кӗпеллӗ, вӑрӑм шурӑ ҫӳҫлӗ тет.

## 629

Пӗр ача алӑк панче халсӑр выртнӑ. Ашшӗ-амӑшӗсем чӳрече панче выртнӑ. Пиччӗшӗ улахран килнӗ те кӗсле илсе калама тытӑннӑ. Кӗсле сассине илтсенех кӑмака хыҫӗнчен юр пек шурӑ тумпа хура куҫлӑскер тухса кӑмака хӗррине итлеме ларнӑ, мӗн калама чарӑниччен итлесе ларнӑ. Калама чарӑнсан кайлах шалалла кӗрсе ҫухалнӑ.

Хӗртсорт ҫапла тохса кӗсле каланине итленине халсӑр выртакан ача курса выртнӑ. Ир полсан ача амӑшне калать:

— Апай, ҫӗр каҫ пичи кӗсле каланӑ чух кӑмака хыҫӗнчен шуп-шурӑ, куҫӗ хураскер тухса кӑмака хӗрне ларса итлерӗ, вӑл мӗн-ха?

— Ҫавӑ ӗнтӗ Хӗртсорт, вӑл хамӑр сӑра ӗҫме кайсан киле пошартан сыхлать. Ҫавӑнпа ӑна валли кӑмака хӳмӗ ҫине ҫӑхӳ хурса хӑваратпӑр, — терӗ амӑшӗ.

Хӗртсорт вӑл кӗсле юррине итлеме юратать, шӑппӑн каланине юратмасть тит.

## 630

Хӗртсурт вӑл кашни ҫуртра пулать теҫҫӗ. Хӗртсурт пӑттине чӳк илсе килмен ҫынна ҫиме юрамасть теҫҫӗ. Хӗртсурт вӑл хӗрарӑм теҫҫӗ, вӑл шап-шурӑ кӗпепе, сурпанпа, кӑнчала арлать теҫҫӗ. Хӗртсурт кӑнчала арлани курӑнсан ҫурт малалла каять теҫҫӗ чӑвашсем.

## 631

Хӗртсурт кӑмака умӗнче пурӑнать тет. Ӑҫта Хӗртсурт пур, ҫав килте лайӑх, пурнӑҫ та малалла каять, килте вӑрҫӑ таврашӗ тухмасть. Кӑштах мӑкӑр-мӑкӑр пулсанах вӑл тухса тарать тет. Хӗртсурт писсессӗн вара пурнӑҫ пӗрре те малалла каймасть тет. Хӗртсурт ан сивӗнтӗр тесен пӳртӗн тӑватӑ кӗтессине кучченеҫ татса пӑрахмалла тет. Тата пӑтӑ пӗҫерсе кӑмака ҫине лартмалла. Вара Хӗртсурт иленет тет. Вӑл кӑмака умӗнче ватӑ карчӑк пулса кӗнчеле авӑрласа ларать тет. Ҫавӑн чухне кураҫҫӗ тет ӑна. Чӑвашсем ӗҫкӗ-ҫикӗне, хӑнана кайнӑ чух: «Хӗртсурт, киле сыхла», — тесе хӑварнӑ тет. Хӑнаран килсен: «Хӗртсурт, тавси, пьянам-пьятам, тавси», — тенӗ. Килтен куҫса кайсан Хӗртсурт йӗрет тет.

## 632

Турӑсем тӗрлӗрен пулаҫҫӗ. Вӗсен хушшинче ыррисем те пур, усаллисем те пур. Пӗрре ҫапла ырӑ Турӑ, ӑна Хӗртсурт тесе чӗннӗ, кил хуҫи арӑмне пулӑшма шутланӑ. Хӗрарӑм ҫӑкӑр хывать те ҫӑкӑра кӑлариччен тесе шыв ӑсма каять. Ҫак вӑхӑтра Хӗртсурт ҫӑкӑр пиҫсе ҫитнине туйса ӑна

кăмакаран кăларса сак çине эретлесе хурать, унтан шурă ал шăллипе витсе хурать. Хайхи хĕрарăм таврăнать те тĕлĕнсех каять: «Ай тур-тур, кам çӳренĕши ман пӳртре? Мĕнле те пулин усал япала пур пуль ман пӳртре?» Тепрехинче вăл пир тĕртме ларать. Тĕртсен-тĕртсен хĕрарăм ывăнса çитет те канма выртать. Часах вăл çывăрса каять. Çав вăхăтра Хĕртсурт кăмака хыçĕнчен тухать те юлнă пире тĕртме тытăнать. Çав вăхăтра хĕрарăм ăса шакшак тунипе вăранса каять. Куçне уçать те пир тĕртмелли станок патĕнче пĕр арçынна асăрхать. Хăранипе хĕрарăм кăшкăрса ярать. Лешĕ çав вăхăтра куçран çухалать. Çапла вара хăй курнине кӳршĕсене каласа парать. Лешсем: «Ара, сан килĕнти Хĕртсурт ĕнтĕ вăл», — теççĕ.

Кайран вара хĕрарăм хăй килĕнчи Хĕртсурта хисеплеме тытăнать. Ăçта та пулин тухса кайнă чух: «Хĕртсурт, эсĕ ман кил-çурта тимлĕн сыхла», — тесе хăварма тытăнать. Хăнаран килсен кил-çурчĕ çаплах тăрсан Хĕртсурта тав тăвать.

## 633

Кунне пĕр рас та пулсан хуран айне чĕртес пулать, унсăрăн Хĕртсурт писет.

## 634

Алла пăхман выльăха Хĕртсурт юратман тет; çиме пуçласан ăна пĕрмай чăпăрккапа çаптарать тет, çавăнпа вăл чĕрĕлмест тет.

## 635

Пӳртре Хĕртсурт пурăнать. Çынсем çывăрма выртсан вăл кăмака çинче тимĕр йĕкепе кĕнчеле арласа ларать. Çав тимĕр йĕке чăнкăртатнине илтекен çыннăн тăрас пулать те йĕкине туртса илес пулать, вара çав çыннăн ĕçĕ пит ăна пуçлать. Йĕкине туртса илеймесен кĕнчелине хăй йĕкипех тытса арлас пулать: апла та ĕçĕ ăнать.

Хĕртсурт вăл питĕ йăваш кăмăллă, пурăнасса кăмака çинче пурăнать. Хăнаран кучченеç илсе килсен кучченеçрен пăртак хуçса илеççĕ те кăмака çине: «Кучченеç килех тăтăр, эпир çиех тăрар», — тесе ывăтаççĕ. Вăл Хĕртсурта пани пулать.

## 636

Кашни килтех Хĕртсурт пур. Ваттисем калана тăрăх, Хĕртсурт пулмасан телей те пулмасть тет. Хĕртсурт яланах шурă кĕпепе çӳрет, çӳçĕ унăн питĕ вăрăм тет. Хĕртсурт шăплăха юрататъ тет. Килте хуçисем хирĕçеççĕ пулсан вăл килтен тухса тарать тет. Çавăнпа та кил хуçисем вăрçмаçăр пурăннă ĕлĕк. Кил хуçисем апат çиме ларнă чух яланах Хĕртсурта та хăналанă. Кил хуçисем ăна хисепленĕ.

## 637

Чуста хурса лартнă тет пĕр хĕрарăм темле праçник умĕн. Хăй выртса çывăрнă. Ачи çывăрса кайман, пăхса выртнă тет. Ирпе вăрансан амăшĕнчен: «Эсĕ çĕрле тăмарăн-и?» — тесе ыйтать тет. Амăшĕ: «Çук», — тенĕ.

Ачи: «Çĕрле темскерле шурă хĕрарăм чуста хуппине уçса пăхса кайрĕ», — тесе калать тет. Ачи питĕ хăранипе пуçне чиксе выртнă тет.

## 638

Хĕртсурт шурă кĕпе тăхăннă хĕр пек тет, усалли те, йăвашши те пулать тет. Çынсем те пĕр пек мар, усалли те, лайăххи те, тăр ухмаххи те пур. Вот хĕртсуртсем те çавăн пекех поль. Анне каланă тăрăх, каçпа çывăрма выртас умĕн пуçланă кĕнчеле хăвармалла, вара Хĕртсурт çĕрле арлать тет çынсем çывăрнă чухне.

## 639

Хĕртсорт кил таврашĕнче порăнать тит. Вăл киле осал-тĕселтен сыхлать тит. Ĕлĕк çынсам таçта аякка каяс-тăвас полсан кил таврашĕнчен мĕн те пулин чĕпĕтсе илнĕ. Ку ĕнтĕ хăйсемпе пĕрле Хĕртсорта чĕнни полнă. Хĕртсорт порте çывăрса кайсан килти ĕçе тома йоратать тит. Çавăн чохне çын тăрса ларса мĕн те полин ĕçлеме тытăнсан ăста полса тăрать. Малашне ăна ĕçре Хĕртсорт полăшса пырать тит.

## 640

Кăнтăрла арланă хыççăн каç çывăрма выртнă чух кăнчалаçça пĕрене çумнелле сĕвĕнтерсе тăратсассăн Хĕртсурт арлать теççĕ.

Хĕртсурт арласан кайран алă ĕçе ўсĕнет теççĕ.

## 641

Хĕртсорт — килте кăмака çинче лараканни. Вăл ĕмĕрех полнă. Хĕртсорт — коçа корăнман хăват. Ваттисем калатчĕç: «Хĕртсорт ĕçленине сиссен çав ĕçе тома тăрăшмалла». Вăл ытларах каçпа е çĕрле ĕçлет. Хĕртсорт çип арланă, çăм чавнă, çип пĕтĕрнĕ. Çип пĕтĕрнĕ полсан çип пĕтĕрнĕ сасă илтĕнет. Вара хăвăртрах çип пĕтĕрме ларма тăрăшмалла, мĕншĕн тесен Хĕртсорт ĕçленĕ вăхăтра ĕç ăнать.

Хĕртсорт ытларах лăпкă кил-йышсенче анчах порăнать. Хĕртсорт порăннă килте ĕç ăнсах пырать.

Çиме ларнă чохне те, киле кĕрсен те, кайнă чохне те Хĕртсорта асăнмалла.

## 642

Хĕртсурт вăл — кил хуралçи. Вăл кашни килтех пур. Енчен те ăна çиллентерсен вăл пăрахса каять. Вара кил хуралçăсăр тăрса юлать. Вăл килте инкек пулма пултарать. Килте апат çиме ларнă чух ялан Хĕртсурта: «Эс те пирĕнпе çи, эс те выçă ан çўре, пирĕн хута кĕр», — тесе калаççĕ.

Килтисем тухса кайсан Хĕртсурт ĕçлет тет. Енчен те вăл ĕçленине курсан унпа пĕрле ĕçлемелле, вара алă ўнеçекен пулать. Вара çав яланах пур ĕçе те лайăх тăвать тет.

## 643

Каçпа çывăриччен урай шăлсан Хĕртсурт юратать тенĕ. Хĕртсурт кĕнчеле арланине илтсен ал ĕç ўсĕнет тенĕ. Хĕртсуртсăр кил пулмасть теççĕ. Хĕртсурт вăл телей кўрет теççĕ. Вăл вăрçă таврашне юратмасть теççĕ.

### 644

Kaçхине пӳртре пичипа анчах. Çывăрма выртрăмăр. Ларма хĕрсем тухса кайрĕç ĕнтĕ. Çывăрса кайсан темле вăранса кайрăм та, мана кăнчала арланă йĕке сасси хăлхана янкăр-янкăр илтĕнсе кайрĕ. Пичи гуç урлă пăхас теп, хусканма хăрап. Пӳртре вăрăм сак çинче чип-чиперех шурă тăханнă хĕрарăм кăнчала арласа ларать. Çак çынна курас тесе пуça йăтса пăхрăм та, нимле çын та çук.

Ирхине пичине каласа кăтартрăм. «Хĕртсурт вăл çапла кăнчала арласа ларать çав», — тет.

Эпĕ вара ăна ани кăнчала арлама килнĕ тесе. Эпĕ аннене астумастăп, вăл эпĕ виçĕ çулта чухне вилнĕ, ати унтан малтанрах вилнĕ. Пичипа анчах пурăннă, юлнă çав нуша пуçтарма.

### 645

«Пĕчченех пурăнатăн, мĕнле хăрамастăн-ха эсĕ, Тарье аппа, çĕр каçма?» — теççĕ çынсем мана. Мĕнле пĕччен пулам-ха эпĕ, Хĕртсурт пурăнать вĕт манпа пĕрле. Итле, хĕрĕм, каласа парам. Пĕрре çапла вăранса кайрăм темле сас пулнипе. Кăлтăр-кăлтăр туни илтĕнет. «Ара, кам çăм арлать-ши?» — тетĕп. Тĕттĕм вĕт-ха пӳртре. Хăраса кайрăм. Унтан пăхатăп та кĕнчеле еннелле куça уççа: пĕр çамрăк хĕрарăм çăм арласа ларать. «Ара, ку Хĕртсурт вĕт», — тесе шутласа илтĕм хам ăшра. Хам вăраннине систермерĕм. Вăраннине сиссен вăл йĕкипе куçран пырса чышать тет, вара çын суккăр юлать. Куça хупрăм та тем вăхăтран çывăрса кайнă. Çапла, хĕрĕм, Хĕртсурт вăл кашни килтех пур. Вăл — пӳрт хуралçи. Мĕнле пĕччен пултăрха, иккĕн пурăнатпăр вĕт.

### 646

Пĕр чăваш ялĕнче пĕр килĕн хуçисем праçник кун кăнтăрлах хăнана кайнă. Килте ачисем анчах юлнă. Вĕсем выляса ларнă. Сасартăк ачасем кураççĕ: урай айĕнчен пир тĕртнĕ чух лартакан юпа шăтăкĕнчен пĕр сапсарă, тенкĕллĕ хĕр тухрĕ те сĕтелтен çу, пашалу тата кăмакаран аш (какай) илсе çирĕ тет, унтан нимĕн чĕнмесĕр тепĕр хут тĕпсакайне кĕрсе кайрĕ тет.

Çав кунран пуçласа çав хĕр кашни каç тĕпсакайĕнчен тухса сĕтел сунтăхне уçса пăхнă. Сĕтелте çу, пашалу, аш татăкĕ пулсан кил хуçисем канлĕ çывăрнă: вĕсене никам та чăрмантарман. Сĕтел сунтăхĕнче çав çимĕççем пулман каç кил хуçисем канлĕ çывăрман. Вĕсене такам кăтăкланă, чĕпĕтнĕ е хĕр макăрнă сас илтĕннĕ тет.

### 647

Хĕртсурт кашни килтех пур. Ăна праçниксенче парне парсан тивмест, памасан хăратать тет, тӳплеттерсе хăварать тет.

### 648

Ĕлĕк Хĕртсурт арлать тетчĕç. Хĕртсурт сисиччен кĕнчелеççи çине лармалла. Вилсен те Хĕртсурт пĕрле пырать тетчĕç. Эпĕ хам та Хĕртсурт пур-

рине сиснĕ. Пĕррехинче çывăрма выртрăм та Хĕртсурт кăнчала шăнкăртаттарса арлать. Куç уçса пăхсан йĕкепе перет тет. Çавăнпа çывăрма выртсан куç уçма хăранă. Кăшăл-кăшăл тутарса арлать тет.

649

Пĕр хĕр каçпа хĕлле тола тохнă тет. Тохнă чох кăмака çинче темскер шорăскер порччĕ тет, кĕнĕ чох тимĕр йĕкепе пăтьăр, пăтьăр! тутарса кăнчала арласа ларать тет. Ку хĕр часрах вырăн çине хăпарчĕ тет те пĕркенсе выртасшăнччĕ тет. Çавăн чохне Хĕртсорт йĕкипе вăрăн!.. тутарчĕ тет. Йĕки хĕре çорăмĕнченех тиврĕ тет те, хĕр макăрсах ячĕ тет.

650

Пĕр çыннăн Марье ятлă хĕрĕ пулнă тет. Çав çын пӳртĕнче уйăх çутипе пĕр хĕр кĕнчеле арласа ларать тет. Амăшĕ курнă тет те хăй хĕрĕ Марье кĕнчеле арласа ларать пулĕ тесе каларĕ тет: «Марье, мĕскер ухмахланса уйăх çутипе авăрласа ларатăн эсĕ», — терĕ тет. Хĕртсурт кĕнчелене пăрахрĕ тет те кĕнчеле авăрлакан йĕкипе хĕрарăмăн куçне тĕртсе шăтарчĕ тет, хăй каллех кăмака çине улăхса ларчĕ тет. Хĕрарăмăн ăна нимĕн те каламалла мар пулнă тет, каламан пулсан унăн ĕçне ăнтарса пынă пулĕччĕ тет.

651

Ойăх çоти çотă тет, атисем çывăрнă полнă. Çĕрле кăнчала арланă сасă шатăр-шатăр тони илтĕнсе кайнă. Коçа оçса пăхнă та — хĕрарăм, шапшорă тăхăннăскер, ларать тет кăнчале арласа. Кил хоçи арăм пырса пăхнă та: «Ах торо, кам, ара, ку?» — тесе ыйтнă тет. Хĕртсорт полнă ку, вара вăл хĕрарăма питĕнчен çотăлтарса ячĕ те çохалчĕ тет.

652

Ĕлĕк пĕр хĕрарăм кăнчала арланă тет. Арласа ĕçĕ ăнман тет. Ыйхă килнипе хĕрарăм çывăрма выртрĕ тет. Йĕкине кăмака çине хучĕ тет. Вăранса кайнă тет те, йĕке пĕтĕрнĕ сасă илтĕннĕ тет. Хĕрарăм йĕкине кайса тытнă тет те арлама пуçланă тет. Хĕртсурт хăйĕнпе тупăшса ĕçленĕшĕн хĕрарăмне питĕнчен сурнă тет. Çакăн хыççăн хĕрарăмăн ĕçĕ ăнса пыма пуçланă.

653

Пĕррехинче пирĕн асанне, çамрăк чухнех, урамран час кĕмен, кая юлса кĕнĕ. Кĕрсен апат çинĕ те çывăрма выртнă. Выртсанах çывăрса каяйман, шухăшласа выртнă. «Илтетĕп, темскер çип арлани илтĕнет, — тет. — Пăхатăп, — тет, — кĕтесре шап-шурă хĕрарăм арласа ларать», — тет. Çавăнпа чутах кăшкăрса яман вăл. Вăл кăшкăрса янă пулсан пырса çутăлтарса яратчĕ тет шурă тăхăнни. Çапса ярсан пит çинче ал йĕрри юлать тет.

## 654

Хĕртсорт кăмака хыçĕнче порăннă. Орай шăлнă шăпăр шăтăкĕнче полнă. Хĕртсортсăр пÿрт çок теççĕ. Хĕртсорт кил хоçи теççĕ. Пĕр пÿртрен тепĕр пÿрте коçнă чох: «Хамăр хоçа хамăрпах айта», — тесе чĕннĕ Хĕртсорта.

## 655

Хĕртсурт кăмака хыçĕнче пурăнать тет. Вăл çынна курăнасшăн мар тет. Анчах та ăна пĕрисем курнă тет. Ку упăшки çывăрсан-çывăрсан вăранса кайнă тет. Такам, шурă кĕпеллĕ çын, çип арласа ларать тет. Ку арăмĕ пуль тесе шутланă тет те чĕннĕ тет: «Мĕн туса ларан эс çĕр хута, Хвекла?» — тесе. Леш шур хĕрарăм таçта кайса çухалчĕ тет. Çакăн хыççăн нихçан та курăнман тет. Хĕртсурта çиллентерме юрамасть тет, апла кил-йышра лайăх мар пулать тет. Пĕр çуртран тепĕр çурта куçнă чух: «Хамăр Хĕртсурт хамăрпа айта», — тесе каламалла тет ыттисене каличчен. Хĕртсурт кил-çурта усал тумасть тет.

## 656

Хĕртсурт кашни килĕре пур. Кăнчала çыхсан виç сĕм туса хумалла, атту Хĕртсурт макрать тет. Виç сĕм тусан Хĕртсурт арлама пулăшать тет. Ĕçкĕрен таврăнсан: «Хĕртсурт, тавсье, ачасем, тавсье», — тенĕ. Икерч пĕçерсен чи малтан Хĕртсурта çиме чĕннĕ. Хĕртсурт килте пулăшса пыракан. Çынсем куçса кайсан та Хĕртсурт çав килтех юлать. Хĕртсурт хĕрарăм та, арçын та пулать. Çынсене, апат-çимĕçе, выльăх-чĕрлĕхе пиллесе пырать. Хĕртсурт хĕрарăм арçынна юратмасть, çывăрнă чух чăрмантарать.

## 657

Хĕртсурт кашни килтех пур теççĕ. Хĕртсурт çук килте килĕшÿ çук, çак çемьери çынсем харкашса кăна пурăнаççĕ. Улахра ларнă çĕрте те Хĕртсурт пулăшнă теççĕ.

Хĕртсурчĕ вăл никама та курăнмасть тет. Ĕлĕк çынсене раскулачить тунă вăхăтра нумайăшне Çĕпĕре ăсатнă. Çавăн чухне кил хуçисем кăмака çумĕнчи тăма çĕçĕпе хăпăтса илнĕ те хăйсемпе илсе кайнă. Тăмне хăпăтнă чухне: «Санăн хуçусем урăх çĕре куçаççĕ. Атя, Хĕртсурт, пирĕнпе çĕнĕ çурта пурăнма, — тенĕ. — Ан юл пиртен», — тесе каланă.

## 658

Хĕртсурт вăл — кил-çурт сыхлакан, куçа курăнман япала. Ĕлĕкхи çынсем каçпа хăйсем çывăрма выртсан сÿс авăрлама тура шăл лартса хунă тет. Вара каçпа пĕтĕр-пĕтĕр авăрлани илтĕннĕ тет.

Ăна вара хăйсем ăçта та пулин вăл çуртран куçса каймалла пулсан кăмакари кирпĕчне кăштах катса кайнă тет. Хĕртсурта илсе каятпăр тесе. Хăшĕ тĕпсакай тăприне илсе кайнă тет. Вăл çуртран каякан Хĕртсурта илсе кайман пулсан, вăл çурта пыраканни илсе пынă пулсан икĕ Хĕртсурт пĕрле пурăнма пултараймасть тет.

Вара пурăнакансем вăрçса пурăнаç тет.

### 659

Хĕртсурт — килти тирпейпе илем турри. Вăл кăмака хыçĕнче пурăнать теççĕ. Хĕртсурт — хĕрарăм. Вăл питĕ тирпее юрататъ, çынсем çывăрнă чухне кĕнчеле арлать тет. Кивĕ пӳртрен çĕнĕ пӳрте куçнă чух Хĕртсурта пĕрле чĕнмелле. Унсăрăн вăл килсĕр тăрса юлать, каçсерен чӳрече умĕнче йĕрсе çӳрет тет.

### 660

Хĕртсурт вăл кил-çурта сыхласа тăракан вăй шутланать. Вăл килти çемье пур чухне те, çук чухне те яланах кил таврашĕнче çӳрет. Вăл хĕр пек тет. Пĕрре вĕсем (урăх çĕре куçакан çемьесем) ялтан тăванĕсем патне пурăнма каяççĕ. Ун хыççăн вара çак килте чылай кун хушши чӳрече умĕнче Хĕртсурт çăм арласа ларнă пулать. Хăй питĕ илемлĕ юрă юрлать тет, юрри хурлăхлă, йĕрсе ямалла тет. Вара çак пĕр эрне пек юрланă тет. Хĕвел анас умĕн е çур çĕр вăхăтĕнче илтĕнет тет çак юрри. Çур çĕр вăхăтĕнче хăй те курăнать тет. Ăна куракансем те пулнă.

Çав кил-çуртран Хĕртсурт кайма та пултарать тет. Кайран çак килте юрă илтĕнмен тет. Ăна вара кайнă пуль теççĕ.

### 661

Пирĕн кӳршĕ хĕрарăмне Хĕртсурт тытнă тесе калатчĕç. Вĕсем Çĕпĕрте хĕрĕпе иккĕш кăна пурăннă. Каçхине пыратчĕ тет вара ыталама.

Чăваша куçса килес каç çĕрĕпе уларĕ тет. Япаласене пуçтарса пĕтерсен те пӳлĕмре уласа макăрни илтĕнет тет. Вара вăл: «Если хочешь с нами, айда, поехали, только далеко ехать», — тесе каларăм тет. Вара уçă алăкран çил пек ваш! турĕ тет те, алăк лап! хупăнса ларчĕ тет.

## Ийесем

### 662

Ийе — ватă амай, килĕш, кил-йыш Турри. Пурна киле усал пулса кайнă, чăмлакан, чир-чĕр яракан усал пулса тăнă. Ийе мунчара та, пушă пӳртре те пурăнать. Ийе вăл çывăрнă чухне çын аллине чăмлать тет, çын алли вара типсе хăрса каять.

### 663

Шуйттанăн пĕр тăванĕ пекки Ийе пулнă. Вăл Шуйттан пекех малтан пĕлĕт çинче, Турă çывăхĕнче пурăннă. Унăн йăхĕ те, Шуйттан йăхĕ евĕрех, пит йышлă пулнă. Анчах Ийе те, Шуйттан пекех, Турă умĕнче айăпа кĕнĕ те — Турă ăна пĕтĕм йăхĕпе пĕрле пĕлĕт çинчен çĕр çине антарнă. Турă тĕртсенех ийесем çĕр çине йĕкел пек тăкăннă та тĕрлĕ вырăна лекнĕ: хăшĕсем этемсен пӳрчĕсем çине, хăшĕсем выльăх картине, хăшĕсем мунча çине, ыттисем урăх вырăнсене ӳкнĕ. Хăшĕ ăçта ӳкнĕ çавăнтах пурăна пуçланă. Çапла вара тĕрлĕ вырăнта ийесем: Пӳрт ийи, Шыв ийи, Карта ийи, Мунча ийи, Уй ийи, Вăрман ийи, Арман ийи пулса тăнă. Ийесем вĕсем — сывлăшсем, куçа курăнмаççĕ. Этем куçне курăнас пулсан вĕсем е этем сăнне, е урăх чĕр

чун сăнне илеççĕ. Турă вĕсене пĕлĕт çинчен тĕртсе антарнăшăн вĕсем Турра хирĕç тăраççĕ. Турă пултарнă этеме те час-часах сиен тăваççĕ: çывăракан çынна тĕлĕксемпе е хăратаççĕ, е илĕртеççĕ, е ăна-кăна тума вĕрентеççĕ, хăш чухне этеме чăмлаççĕ, чирлеттереççĕ, çула тухнă çынна çулран аяккалла илсе каяççĕ, çĕрле лаша çине утланса чупаççĕ, лашана тарлаттараççĕ, чирлеттереççĕ. Кил хуçине юратнă вăхăтра ийесем ăна пулăшаççĕ те.

Кирек мĕнле пулсан та, авалхи чăвашсем ĕненнĕ тăрăх, ийесем усал сывлăшсен хисепĕнче тăнă.

## 664

Ийе мулчара пурăнать тетчĕç. Вăл Киремет те, йĕрĕх те мар. Ăна чӳк туса пуççапмастчĕç. Ийе çынна çыпăçсан çын чирлекен пулать. Чирлĕ çын çумĕнчен ăна йĕплĕ хулăпа çапса хăвалатчĕç.

## 665

Ийе — хаяр турă. Ийе ачана çулать. Ачана Ийе çуласан ача хирĕçет, макăрать. Ийе ача патĕнчен пăрахса кайтăр тесе ăна парне памалла. Пӳртре хĕвеле хирĕç тăмалла та пĕç хушшинчен сĕлĕ е урпа, е тулă сапмалла. Çакăн пек каламалла:

— Сарă, суккăр, чăлах, тух, тух, тух! Пирĕн (ача ятне каламалла) асап кӳрсе ан тăр.

Кайран шăлса пуçтарса тула пăрахмалла. Ийе çынна чăмлать те тет. Кун хыççăн кĕлетки пăсăлса юлать.

## 666

Чăвашсен кашни килтех кăмака айĕнче Ийе пурăнать теççĕ. Килтен çитĕннисем пурте тухса кайсан, сăпкари ачине пĕчченех пăрахса хăварсан кăмака айĕнчи Ийе тухса çав таса ача çумне çыпçăнать тет. Вара ача куçне ылмаштарса пăхса, аллине, пӳрнисене саркаласа сăмси патнех тытса выляса выртать тет. Çак таса ачаран Ийене хăваласа кăларма пĕр-пĕр карчăка чĕнмелле. Карчăкĕ кăштах вĕрӳ-суру чĕлхине чухлаканни пулмалла.

Карчăк Ийене хăвалама тытăнать. Вăл çапла пуçланать: пӳртре урай варрине йĕплĕ хулăпа карта тытатпăр тесе йĕплĕ хулă патакĕсене хурса тухаççĕ. Унта çĕçĕ, хачă, катăк пуртă тавращĕсем хурса тухаççĕ. Варрине çăкăр, тăвар, кĕрпе, çăнăх хураççĕ. Унтан карчăк тьфу! тьфу! тесе йĕплĕ хуллипе Ийене хăвалама тытăнать. Ийе вара хăй вырăнне кăмака айне кĕрсе ларать тет. Карчăкĕ çăкăр, тăвар, кĕрпи, çăнăхĕ пурне те пĕрле пуçтарать те шыва кайса анаталла юхтарса ярать. Çакăн хыççăн ача алли-урисемпе, пӳрнисемпе вылямасть тет.

## 667

Ийе уйрăмах мунчара тата ытти вырăнта та пулать. Выльăх-чĕрлĕх хупакан çĕрте пулать. Вăл Ийе тени çичĕ ятлă пулать, ак унăн ячĕсем: 1) Мул ийи, 2) Çĕр ийи, 3) Кĕлĕ ийи, 4) Макра ийи, 5) Чĕпĕте ийи, 6) Çул ийи, 7) Çĕрлехи ийе. Вĕсем тытсан выльăх-чĕрлĕх хутланса ӳкет. Ăçта выльăх-чĕрлĕх пуçне те çавăрса лартать.

## 668

Ийе — усал вӑй. Ийе пӳртре те пулать, Мунча ийи те пулать, уйра пурӑнаканни те пулать. Ийе ытларах пӗчӗк ачасене тапӑнать. Ачана ашшӗ-амӑшӗ пӗччен лартса хӑварсанах е вӗсен умӗнчех Ийе ача алли-урине чӑмласа кайма пултарнӑ. Вара ӑшне чир янӑ. Аслисене те чирлеттерме пултарать. Ҫын ҫывӑрнӑ вӑхӑтра ун аллине е урине чӑмласа кайнӑ. Вара чӑмланӑ алӑ-ура типет, ӗҫлеми пулать.

Ашшӗ-амӑшӗ ана ҫине тырӑ вырма кайсан ачана пӗччӗнех лартса хӑварнӑ. Уйра пурӑнакан Ийе ачан аллине е урине чӑмласа хӑртса лартнӑ тет. Ийе усал этемрен пулса кайнӑ тет.

## 669

Ийе качча каймасӑр ача тунӑ хӗр шыва сиксен пулать тет.

Энӗш ҫырминчех ӗлӗк Ануш ятлӑ качча каймасӑр ача тунӑ хӗр сиксе вилнӗ, унтан вара Ийе пулнӑ.

Ануша куланай пухма килнӗ уретник мӑшкӑл туса хӑварнӑ пулнӑ. Ачи ҫуралсан вара вӑл ачипе пӗрлех шыва сикнӗ, Ийе пулнӑ тет. Ийе пулсан ҫав хӗре кам мӑшкӑлланӑ, ҫавӑ чӑтма ҫук пысӑк хӗнпе вилет тет. Мӑшкӑл тунӑ хӗрсем ҫавӑнпа вара ача ҫуралсанах шыва сиксе вилеҫҫӗ.

Ийе каҫ кӳлӗм шыв хӗрринчи хӑвасем патне ачине ҫитерме тухать тет.

## 670

Айа ҫолӗ ҫине вите полсан отсем начар полаҫҫӗ тит. Айа ҫӗрле отсене отлана-отлана чопать. Пӗр ҫыннӑн вити айа ҫол сине полнӑ тит. Утсем хоп-хора шӑва ӳксе тараҫҫӗ тит. Айа пит хытӑ чопать тит. Ҫампа ват ҫынсем чӑрсӑр хытӑ чопакан ачасене: «Айа потекки пек чопаттӑр», — теҫҫӗ.

## 671

Пӗррехинче пирӗн пата кӳршӗ карчӑкӗ пынӑ. Ялa хӗрӗ пӗчӗк ачине амӑшӗ патне килсе янӑ. Халь ку кӳршӗ карчӑкӗн ачийӗ чирлесе кайнӑ. Пынӑ та калать: «Ман хӗрӗн ачи чирлесе кайрӗ-ха, — тет, — тем пулчӗ, — тесе калать. — Вӑхӑт-вӑхӑтпа ҫухӑрса ярать, температури ӳссе кайрӗ, ача вӑйсӑрланса кайрӗ, куҫӗсем темле пӑхма пуҫларӗҫ», — тет.

Халь пирӗн кукамӑшӗ калать: «Апла ӑна Ийе чӑмласа кайнӑ пуль. Пӗрер кун вӑрмана кайса кӑткӑ йӑви ҫинче йӑвалантарса пӑхас-ха», — тет.

Вара вӗсем, чӑнах та, вӑрмана кайнӑ. Ачине сарӑ кӑткӑ йӑви ҫинче йӑвалантарнӑ. Ун хыҫҫӑн ачин чирӗ иртсе кайнӑ тет.

## 672

Паралич ҫапнӑ ҫынна Ийе лӑскаса кайнӑ тенӗ. Ҫын чирлесен шыв тытнӑ тесе шыв ҫине ҫӑкӑр, ҫип таткисем кайса яраччӗҫ ҫын сывалтӑр тесе. Ҫын хӑраса пӑсӑлсан ҫавӑн вырӑнне вара чун вырӑнне чун паратпӑр тесе пуканесем кайса пӑрахаҫҫӗ.

### 673

Ийе — усал вăй, вăл мунчара пурăнать тет. Çын мунчара пĕччен юлас пулсан Ийе ăна кăмака хушшине илсе кĕрсе чăмлать. Ку çын мĕнпе те пулин çылăха кĕнĕ тесе каланă ватăсем.

### 674

Мунча ийи, этем пек, çемьепе пурăнать тет. Çын мунча кĕрсе тухсан вара вĕсем те мунча кĕреççĕ тет. Вĕсем кăвак ӳтлĕ, шĕвĕр питлĕ-куçлă. Пирĕн чăвашсем куракансем те пулнă.

Пирĕн ялта пĕр матка мунча кĕме кайнă та мунча кĕрсен урасенчен туртса хăрата пуçларĕçĕ тет. Вара аран-аран кĕпи-йĕмне илсе тухса тарчĕ тет.

### 675

Ийе мунчара, сентре айĕнче, пурăнать тет. Пирĕн ялта пĕрре пĕр карчăка Ийе чăмланă тесе калатчĕç.

Вăл пĕррехинче мунчана пĕчченех кайнă тет. Сентре çине улăхса ларнă тет. Мунчинче тĕттĕм пулнă. Вара çав вăхăтра карчăк Ийепе кĕрешме пуçланă. Хĕрарăмĕ хăранипе кĕпесĕр-мĕнсĕр, хăрах урине кăçатă тăхăннă, хăрах ури çарранах, çӳçĕ-пуçĕ сапаланчăк чупса пынă килне. Вара ун хыççăн ун тути чалăшнă, алли-ури çемçелсе ларнă тет.

### 676

Ĕлĕк-авал пĕрисен питĕ нумай ача пулнă тет. Амăшĕ кусене пурне те мунча кĕме илсе аннă. Пĕрин хыççăн теприне çăва-çăва кăларса килне йăтса кайнă. Çавăн пек пăтрашса çӳресе пĕр ачине манса хăварнă тет. Килне кайсан шутласа пăхать те, пĕр ачи çук иккен. Хайхи мунчана чупса каять те пăхать — ачин тути кукăр (ачин тутине мунча Ийĕ улăштарса кайнă пулнă тет).

### 677

Ийе вăл тĕрлĕ вырăнта пурăнать тет. Чи осалли мончара тет. Çавă мончари поринчен те осал, анне çапла калатчĕ. Ман шăллămах Ийе чăмланă. Анне каланă тăрăх, Ийи, монча кĕме кайсан, шăллăма лектернĕ тет. Ларатăп тет анне, трук корка хăйне хăй ӳкрĕ тет орай варрине. Онччен те полмарĕ тет, ача макăрса ячĕ тет. Анне он чох ним те пĕлмерĕм тет. Кайран ача йăшса-йăшса пычĕ тет те саççим пĕтсе кайрĕ тет. Отма самай вĕреннĕ ача ларайми те полчĕ тет. Анне йомçă патне те кайса килнĕ тет, номай кайнă тет. Он хыççăн кăштах самайланнă тет, анчах ача ӳсеймесĕр йолчĕ тет порпĕр. Храх айккинчи ори те, алли те ĕçлемесчĕç тет. Вонă çола çитсен вилчĕ тет вара.

### 678

Чĕчĕ ачине мунчара пĕр саманта та пĕччен хăварма юрамасть теççĕ. Ийе улăштарса каять теççĕ. Ийе улăштарнă ачи начаркка пулать, шăммишакки лĕнчĕркке пулать. Ялан кăна сăпкара выртать, миçе çул пурăнсан та. Ури çине тăраймасть, калаçаймасть.

Ачине юман юпа çине хураççĕ те: «Эсĕ улăштарнă ачана, парап сана пуçăнтан!» — çапла калаççĕ. Вара Ийе хăраса хăйĕн ачине илсе каять тет. Çак ачине каялла илсе килсе парать тет.

## 679

Ийе икĕ тĕслĕ полать тет. Пĕри килте порнать тет, сорăхсем патĕнче е витере тет. Тепри вара мончара. Мончари осал тет. Ийе ачи ленчеркке тет, ялан йĕрет тет. Ийе ачине çынсен ачисемпе олăштарса хорать тет, хăйĕн ачи лайăх полтăр тет ĕнтĕ вăл. Вара ачи çав тери макрать тет. Çан пек чохне Ийе ачине шӳтернĕ холăпа çаптармалла тет те, Ийе хăех илет тет. Хăйĕн ачи хăйĕннех çав, шеллет те поль ачине.

Мончари осал терĕм ĕнтĕ. Çав чăмласан хăрушă тет, онтан çын пит чĕрĕлмест те тет. Килтинчен лочше йомçăсем вĕрсен чĕртеççĕ тет, иконтан чĕртме çок тет.

## 680

Ийĕ мунчара та, пушă пӳртре те пурăнать тет. Вĕсенĕн хушшинче суккăрри те, чăлаххи те, уксакки те пур тет. Ийĕ вăл çывăрнă чухне çынна аллине чăмлать тет, çын алли вара типсе хăрса каять тет. Тата унтан пуçне Ийенĕн акă мĕнтен çынна сиенĕ пур. Вăл хăйĕн уксах, суккăр, чăлах, сĕлекеллĕ ачипе çыннăн сывă ачине улăштарать тет. Çыннăн ачине илсе кайса хăй суккăр ачине парса хăварать тет е урăх тĕрлĕ чирлĕ ача парса хăварать тет. Ийĕ улăштарнă ача пуçне тӳрĕ тытаймасть, сĕлекине юхтарать, ахăлтатса кулать, аллисемпе пĕрмаях вылять тет. Ийĕ хăй ачине калла илсе кайса çын ачине кӳрсе патăр тесе акă çапла тăваççĕ. Сывă мар ачана (Ийĕ улăштарнă ачана) вĕри мар кăмакана пăрахаççĕ. Кăмака çăварĕ умне типĕ, тылламан йĕтĕн хураççĕ те вут тивертсе яраççĕ. Пĕр хĕррине Ийĕ кĕмелĕх уçă хăвараççĕ. Вара йĕплĕ хулă илеççĕ те кăмака умĕнче Ийĕ ачине хĕнетпĕр тесе çапаççĕ: «Акă сана, Ийĕ ачи, Ийĕ калла илсе каймасан сана çунтаратпăр тата питĕ хĕнетпĕр», — тесе çапаççĕ. Ача кăмакара макăрса выртать. Унтан тата хытăрах: «Ийĕ, ман ачана калла пар, памасан сан ачуна вĕлеретпĕр», — тесе ачана кăларса ерипе çапаççĕ. Ийĕ вара хăй ачине хĕрхенсе çын ачине калла пырса парать тет, хăй ачине калла илсе каять тет.

## 681

Ийе мунчара е урайĕнче* пурăнать, сайра пуш пӳртре те пурăнать. Кураççĕ ăна. Ача-пăчана улăштарса каять. Хăйĕн ачи начартарах пулсассăн этем ачине улăштарать. Килте ыттисем çук чухне сăпкара выртакан ачана илет те ун вырăнне хăйĕнне хăварать. Ийе ачи çемçе, ленчеркке пулать: питĕ йĕрет. Нишлĕ ача теççĕ ун пеккине. Ачине хĕнемелле тет пĕлсен; вара улăштарса каять тет каялла.

Мунчари Ийе усал тет килтинчен. Вĕсем çынна çапăнсан усал тăваççĕ. Ача-пăчана, пысăк çынна та çапăнать. Вăл çапăннă çын ленчĕркке пулать: ăна асат хуçать. Ийене вĕртсе кăлараççĕ. Питĕ вирлĕ вĕрекен тутар арăмĕсем пур. Тухнă чухне хăйне, вĕрекене, аптăратса хăварать тет. Ийе сикет теççĕ.

* Тĕпсакайĕнче.

Манăн шăллăма вĕртме ҫӳретчĕҫ эпĕ пĕчикҫĕ чухне; кашни каймассерен ҫăнăх, кĕрпе, кăмрăк тата темĕн те иле-иле каятчĕҫ. Атте нумай та вĕреннĕ ҫын, ҫаплах кайнă. Шăллăма мунчара ҫапнăччĕ. Мунча кĕнĕ чух тĕк тăмалăх витре чăн-чăн! туса кайрĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет, вырттарнă ачи шари-шари! иккĕ-виççĕ хытă кăшкăрчĕ тет. Ҫавăнтан вара пирĕн ача начарланнăҫемĕн начарлана пуҫларĕ тет. Хай ача ни ҫывăраймасчĕ, нимĕн тăваймасчĕ тет. Ачана асат хуҫа пуҫларĕ тет. Ҫинерех илтсе пĕлеҫ те каяççĕ хăвăртрах тутар арăмĕ патне. Тутар арăмĕ вĕресшĕнех мар тет. Ывăлĕпе кинĕ хăйĕнчен вăрттăн каларĕҫĕ тет: «Ҫаврăнĕ-ха ҫапла тусан, капла тусан», — тесе калаççĕ тет. Хăй тутар арăмĕ чăнах та вĕрме пулчĕ тет. Вара вĕртме ăна ҫиччĕсаккăр та кайнă тет. Малтанах вăл териех тарăхса вĕрмес тет. Виççĕмĕшĕнче, тăваттăмĕшĕнче питĕ хытă тытăнса вĕрчĕ тет. Хăй амак тытнă пек пулса кайса ӳксе нумайччен выртрĕ тет. Ывăлĕпе кинĕ шыв-мĕн парса, мĕн туса хай арăм пĕр ҫур сехет иртсен тин тăчĕ тет чипер ҫын пулса. Аннен пирĕн (вăл унтах пурăннă) сехри хăпнă: вилчĕ-тĕр тесе. Вăл ачаран тухсан хăйне анратса хăварать тет иккен. Чăваш арăмĕсем вĕрнĕ-сурнă чухне анаслаççĕ тет, вĕрме йывăр теççĕ: лешĕ, усалĕ, йывăрлантарать теççĕ. Ҫав тутар арăмĕ аптранăран вара ача самайланнăҫем самайлана пуҫларĕ тет, йĕме те вăл териех йĕмесчĕ тет. Ҫапла шăллăм хуллен-хуллен чĕрĕлнĕ. Халĕ сывă ҫынах, анчах хăрах вĕчи, ҫав ĕлĕк ыратни, аяларах. Чупма та вăл териех аван мартăр — час ывăнать, Ийе сикет тет. Анне ҫав тутар арăмĕ патĕнче пурăннă чухне кашни ҫĕр тутар арăмĕ тăра-тăра ачана ҫĕрле тĕттĕм ҫĕрте вĕретчĕ тет. Вĕрнĕ хыççăнах ача лăпланса aранҫĕ ăйха каятчĕ тет. Анне те ăйха каяттăмччĕ тет. Пĕрре ҫапла вăл ăйха кайсан кăштăр-кăштăр тунă пек пулчĕ тет. Анне хăраса вăрантăм тет. Вăл иккен — тутар арăмĕ — вĕсем патне пынă тет те анне ҫумĕнчи ачана вĕрсе ларать тет. Ҫавăнтан хăранипе (вăл шухăшлать: «Тутар арăмĕ вĕрме пырсан Ийе тарнă чух мана сĕртĕнсе хăратнă-тăр») аннен те хăрах алли типе пуҫланă тет. Ăна та пĕр-икĕ хут кайса вĕртĕм тет те тӳрленчĕ тет. Ҫапла калать ҫав анне. Анчах ун пек, кун пек япала ҫинчен ҫынна каласа пама юрамас тет; лешне, чĕрĕлнине, хĕн килет тет. Вĕрекене те аван мар тет; ĕҫĕ уҫăлмас тет.

### 682

Ман атте пĕрре мучи патĕнчен таврăнатăп тет. Ял варринчи ҫырма ҫумĕнчи мунчара хĕрсем пур тет. Хĕрсем юрлаççĕ тет. «Митюк пур та Анюк пур», — теççĕ тет хăйсем. Мунчана чĕн пиҫиххи илсе кĕтĕм тет. Ҫуттине лап сӳнтерчĕҫ тет. Аттен ҫӳҫĕ-пуҫĕ патак пек пулнă тет, ҫĕлĕк пуссан та анмасть тет. Енчен енне чĕн пиҫиххипе ҫапрăм тет. Каялла тухрăм та никам та ҫук тет.

### 683

Пĕр хĕр вăйăран килнĕ хыççăн ҫурма ҫĕр ҫитеспе мунчана пĕччен ҫăвăнма кайнă тет. 12 сехет ҫитсен кун патне шап-шурă ҫӳҫлĕ Ийе карчăк тухса ларса ҫăвăнма пуҫларĕ тет. Ку хĕр хăраса шурса кайса ним чĕнме аптраса ларчĕ тет. Ийе ҫăвăнса пĕтерчĕ тет те калать тет: «Ĕнтĕ эпĕ кашни эсĕ мунча кĕнĕ чухнех санпа пĕрле ҫăвăнма пуҫлатăп». Хĕр мунчаран тухать тет, амăшĕсем тӳрех кураççĕ хĕр шуралса кайнине. Ийе хĕре хăйне курни ҫинчен никама та калама хушман. Амăшĕ ыйтнипе ку каласа

парать. Тепрехинче мунча хутсан, хĕрĕ мунчана каяс умĕн, ялти ҫынсене пуҫтараççĕ те мунча патĕнче кĕтсе тăраççĕ. Ийе тухсанах хĕр патне сиксе кĕреççĕ. Ийе ҫакна курсан ҫĕтет те. Хĕрĕ те ҫук пулать тет.

## 684

Ĕлĕк пĕр карчăк хăйĕн кинĕсемпе мунчана кайнă тет. Мунчи ҫыран хĕрринче ларнă. Арҫынсем чылай маларах кĕрсе тухнă пулнă. Кусем ҫĕрлене юлнă. Мунча патне ҫитеççĕ. Шалта милĕк сасси ҫат! ҫат! илтĕнет тет. Карчăк кинĕсене: «Айтăр каялла каяр!» — терĕ тет.

— Кунта Ейĕ путеккисем килнĕ ĕнтĕ. Мунчана чылай ҫĕрле, ҫынсем кĕрсе тухнă хыççăн, Ейĕ путеккисем килеççĕ, — тет. — Ҫавăнпа ҫĕрле мунчаран тухнă хыççăн тепĕр хут каймалла мар, — тет.

## 685

Пĕррехинче пиччепе инке мунча хутса пултараççĕ. Мунча кĕме пит часах каймаççĕ. Хăйсемпе пĕрле ҫулталăкри ачине илеççĕ. Ҫаксем мунчара ҫăвăннă вăхăтра кŭршĕ хĕрарăмĕ Сухви пырса кĕрет. Хăй ҫŭсне-пусне сапаланă тет. Инке калать тет: «Ай тур-тур, Сухви аппа, ара, эсĕ мĕнле арҫын ҫинех килсе кĕтĕн?» Лешĕ пĕр сăмах та шарламасть тет. Лаххан ҫинче ҫаксен ачи шывпа выляса ларнă тет. Сухви аппа текенни пĕр сăмахсăрах ҫŭсне турам пек туса пĕр ҫŭҫ пĕрчине ача ҫине ывăтрĕ тет. Ҫав вăхăтра ача питĕ хытă ҫухăрса ячĕ тет. Пиччепе инке пăхаççĕ: мунчари Сухви аппа ҫук та иккен. Вĕсем хăраса ŭксе мунчаран васкаса тухаççĕ тет. Тепĕр кунне ҫаксен ачин алли-ури хускалми пулнă тет.

## 686

Ĕлĕк-авал пĕр пуян патĕнче пĕр чухăн тарҫăра пурăннă тет. Пĕррехинче пуянсем мунча хутнă та пĕтĕм ҫемйипе ирех кĕрсе тухрĕҫ тет. Тарҫи лава кайнă тет те часах таврăнман тет, ҫĕрле анчах таврăнчĕ тет. Ҫур ҫĕр ҫитеспе пуян тарҫине калать тет:

— Палля, мунча хутнăччĕ, кайса кĕр, — тесе.

Кайрĕ тет тарҫă мунча кĕме, таса кĕпе-йĕм, ҫăвăнма лаххан илчĕ тет. Мунчана ҫитсе хывăнчĕ тет, лапки ҫине хăпарса ларчĕ тет, кăмака ҫине шыв сапса пăс кăларчĕ тет, ҫапăнма пуҫларĕ тет. Ҫапла ҫапăнса ларнă хушăра лапка айĕнче чаштăр-чаштăр! туни илтĕнет тет. Пăхать тет, лапка хăмисем те силленкелесе ҫĕкленме тытăнчĕҫ тет. Тинкеререх пăхать тет те лапка айĕнче хăрушă чĕр чун пуррине курах каять тет. Ку Мунча ийи пулнă тет. Тарҫă шиклене-шикленех пĕрре ҫавăрса ҫапрĕ тет ийене лахханпа, хăй тухрĕ те тарчĕ тет юр ҫийĕн ҫара уранах. Тепĕр кун тарҫă мунчана кайса пăхрĕ тет те, лаххан вырăнне урайĕнче чĕлпешкесем анчах выртаççĕ тет, Ийе ăна пĕтĕмпех вакласа пĕтернĕ тет.

## 687

Выльăхсене усал пама пултаракан Ийе — Карта ийи. Выльăх-чĕрлĕхе вăрҫмалла мар тет, вĕсене вăрҫнине Карта ийи хăй енне илет. Выльăхсене ҫупăрласа кăна тăмалла. Вĕсене вăрҫсан выльăхсене асап кŭме пулать. Выльă-

ха асап кӳни вăл — çынна асап туни. Çын çакăн хыççăн ӳкĕнет: «Пĕтменĕ, карăнманă тесе вăрçмалла марччĕ иккен», — тет. «Выльăха лайăх усрамасан усрамалла та мар та», — тет Карта ийи. Выльăхсене кĕтĕве хăваланă чухне сурăхсене валли хăйне, ĕнене валли хăйне ешĕл турат татса килнĕ. Кĕсьене кашни выльăх пуçне икĕ çăмарта чикнĕ. «Çак çăмарта пек çаврака пулччăр», — тенĕ. Калле килнĕ чухне çав хулăсене пăрахмалла мар, вите мачч кашти çумне чиксе хумалла. Вара ийи йыхăрса тăрать вĕсене.

## Кил-йыш управлăхĕ. Вăйкилли. Йĕрĕхсем

*Тĕнче хăвачĕсемпе этем кирек хăçан та калаçма пултарнă. Пӳртре çавна валли Уша юпи лартнă. Вăл Тĕнче йывăççин палли, Турă тĕпелĕ.*

*Хуçалăхра темиçе пӳртпе пурăннă чухне чăвашсен хăйсен Вăйкилли пулнă. Пĕр йышри йăх-тăвансен, пĕр таврашсен кĕлĕ вырăнĕ, управ кĕтесĕ вăл. Вăйкилли— Аслă йĕрĕх вырăнĕ.*

*Вăйкилли пĕлтерĕшĕ XX ĕмĕрте çухалса пынă, Тӳркĕллипе е Кĕçĕн Киремет пĕлтерĕшĕсемпе хутшăнса кайнă. Халĕ Вăйкилли тесен туй вăхăтĕнче качча каяс хĕр пытанса ларнă çурта, кĕлете калаççĕ. Каччин хĕре туя Вăйкиллинчен кăларса килмелле. Унтан тухнă чухне хĕре Йĕрĕх кунтăкĕнчен е пĕрнерен пукане, сурпан е урăх парне парса яраççĕ. Пĕтĕм кунтăка парса яни те пулать; ун пек чухне ашшĕ хăйсене валли çĕнĕ кунтăкпа йĕрĕх хатĕрлет.*

*Йĕрĕх вырăнĕ— çын сут çанталăкпа, несĕл пуçĕсемпе, Турă хăвачĕсемпе телей, канăç, сывлăх ыйтса калаçмалли вырăн. Вăл вырăн таса кĕлетре, уйрăм çуртра, пӳлĕмре пулма пултарать. Йĕрĕх кĕтесĕ кашни килтех пулнă. Аслă Йĕрĕх вырăнĕ — Вăйкилли — ăратнен пĕрре кăна. Пĕтĕм тăвансем унта пĕрле те, уйрăммăн та пырса çӳренĕ; ютсене вăл вырăна кăтартма юраман. Кам патĕнче упраннине кура Йĕрĕх вырăнĕсене ят панă: Уртемей йĕрĕхĕ, Ялюшки йĕрĕхĕ.*

*Йĕрĕх — çынна, уйрăмах арăмĕпе упăшкине, пулăшакан ырă вăй. Йĕрĕх кунтăкне кĕркунне ылмаштарнă. Ахаль чухне ача-пăчан е ют çынсен ăна тивме юраман. Чӳклемесен е хисеп тумасан Йĕрĕх «тытма», чир-чĕр яма пултарать тенĕ. Вăл тавлашнине, харкашнине, итлеменнине, пĕр-пĕрне усал каланине юратман. Ăна чăваш килĕшӳпе çураçу ырри тесе упранă, çынсем Вăйкилли пуçĕ е юмăç хушнисене итленĕ.*

### 688

Пирĕн кивĕ кĕлетре алăк хыçĕнче пĕр ленкес çакăнса тăрать. Çав ленкесре Йĕрĕх пур теççĕ. Çав Йĕрĕх нумайăшне кĕсен-çăпан кăларать, суккăр тăвать, шыçă парать теççĕ. Çавăнпа вара ăна çуллă мимĕрпе пырса чӳклеççĕ е тăхлан пырса шăратаççĕ. Çапла тусан вара ыратни чарăнать теççĕ. Тата çĕнĕ кĕрӳсем пырса салам параççĕ. Çĕнĕ кĕрӳсем салам памасан вĕсене Йĕрĕх тытать теççĕ тата салам панă чух кулсан килĕшмест теççĕ. Тата çав ленкесе пырса тĕртĕнсен те хĕн-хупăр парать теççĕ. Пирĕн тете салтакран килсен пĕрре çав ленкесе пахчана кăларса ытнă иккен, çав тĕлте манăн куç пĕр эрнеччен ыратса тăчĕ те тӳрленчĕ. Манăн куçа вара хăйне кăларса ытнăшăн Йĕрĕх тытнă та, вырăнне кӳртсе çакса мимĕр чӳклесен тин тӳрленчĕ тетчĕç. Тата тепĕре инкен куçĕсем ыратса шур илме пуçланăччĕ. Ăна та тата кĕлет тасатнă чух Йĕрĕхе перĕннĕшĕн пулнă тетчĕç.

## 689

Йĕрĕх полнă пирĕн ялта ватти, отаманĕ. Ялĕпех йĕрĕх полнă, пĕри полнă отаманĕ. Она параччĕ такасам; ялти çын шăпах килет те парат. Первей çăнăх хорат, икĕ пос окçа хорат, кĕрпе хорат, асăнса она: мана отнаккă ту тесе, хаман ту; эп сана така паратăп тет; халях парăп тет. Пасара каят, илет така, пĕр полтинник парса илет. Карян посаччĕ, пасартан кисен. Пуссан Йĕрĕхе поççапаччĕ: çăпан ан кăлар мана, суат (сыват) çăпантан тет. Поççапат та ашне çиет пӳрт-ăш халăхпа; шăннине çонтарат. Вара çырлахрĕ, çăпан тохмарĕ. Лаçра хиçкил* полнă, хиçкиле тăрăхла пĕрне çакнă; пусса çисессĕн аш татăкки яраччĕ. — Йĕрĕхе çĕмĕртĕм, пĕрĕшне туйеккине исе тохрăм, виç хут çавăрса çапрăм та, икĕ послăх окçасам тохса карĕç, çĕр полчĕ; мана ним те полмарĕ, Йĕрĕх ним те туимарĕ.

## 690

Пирĕн ялта, Ялавăрта, чӳк тунă вырăнсем икĕ тĕлте: пĕри ту çинче, тепри ял варринче. Малтанхине Киремет теççĕ. Çав вырăнсенче хурамасем лараççĕ. Вăл хурамасене никам та касмасть, вĕсене кассан çын вилет теççĕ, Йĕрĕх пусать теççĕ.

## 691

Пĕр çыннăн виçĕ хĕр полнă. Çав хĕрсем виççĕшĕ те çитĕнсе çитнĕ, çапах вĕсем валли каччӑсем тупăнман. Пĕр вăхăтра çавсем патне пĕр ватă старик хĕр пăхма пынă. Аслă хĕрĕ çак старике корнас мар тесе хоп пĕрне ăшне пытанса ларнă. Старик икĕ хĕрне каччӑсем топăнччăр тесе пиллесе хăварнă, тепĕр хĕрне пытанса ларнăшăн ак çапла каланă: «Эсĕ ĕмĕр-ĕмĕрех çав пĕрне ăшĕнче порăн, сана кам хисеплемĕ, эсĕ ăна кĕсен-çăпанпа асаплантарăн тата кам хисеплĕ, ăна тивмĕн тенĕ. Вара çав хĕр пĕрне ăшне Йĕрĕх пулса юлнă. Халь çав Йĕрĕх пĕрнисем хăш-хăш çынсен ампар айĕнче çакăнса тăраççĕ. Кам Йĕрĕхе пырса сĕртĕнет, ăна Йĕрĕх кĕсен-çăпанпа асаплантарать. Çак Йĕрĕхе çораçтарас тесе нимĕрпеле чӳк тумалла тата пĕрене çомне тăхлан татăксем çакса хумалла. Вăл Йĕрĕх патне тола кайма та юрамасть — кĕсен-çăпан ерет. Ĕлĕк пуян çынсем хĕрсене те йĕрĕхсем парса янă, Йĕрĕхсĕр пĕр хĕр те кайман. Йĕрĕх парса ямасан пурнăç ăнмасть тенĕ авал.

## 692

Йĕрĕх тата ак çапла пуçланса кайнă. Йĕрĕх те хĕр пулнă. Вăл пит ачаш хĕр пулнă, ялан йĕрсе ларнă. Çавăнпа ăна Йĕрĕх тенĕ. Пит йĕнĕрен ăна тутлă çимĕçсем панă, пит ачашланă. Çеçке вăхăтĕнче çеçкесемпе йăпатнă. Çапла хăтланса вăл пурне те хăратса çитернĕ. Вăл ялан юхан-суран кăлараp тенĕ. Çавăнпа вăл вилсен те ăна кашни килĕре Йĕрĕх кунти туса хисепленĕ. Йĕрĕх кунти ак çапла тунă. Çĕрле çын сывăрнă вăхăтра хăва касса килнĕ. Çав хăвана авса кунтă тунă. Кунтине тунă чухне пĕр хĕрĕ йĕрсе тăнă. Амăшĕ ăна ан йĕтĕр тесе мимĕр пĕçерсе сар çу сапса çитернĕ. Кунти-

---

* Лаçри уйрăм вырăн.

не туса пĕтерсен çав йĕрекен хĕрĕ малтан мимĕр янă, унтан вара пурте янă. Юлашкинчен пĕр нухрат янă. Вара Йĕрĕх кунтине ачасем пыман çĕре лартнă. Çеçке вăхăтĕнче Йĕрĕх кунтине çеçкесемпе илемлентернĕ. Ачасем астумасăр Йĕрĕх кунтине пырса перĕнсен çавăнтах çемйипе чирлеттернĕ. Вара Йĕрĕхе чӳк туса мимĕр пĕçерсе çинĕ. Ку килĕренхи капла, унтан тата халăхпа пĕр пӳрт лартса панă. Пӳртне пушăт хунинчен тунă, çеçке вăхăтĕнче вара ялĕпе кашней килĕрен пĕр çын çеçке тытма кайнă. Ун пӳртне çав тĕрлĕ илемлентернĕ. Килти Йĕрĕх çырлахмасан çавăнта çырлахтарнă. Халĕ килĕрен çук, анчах ĕлĕк халăхпа лартса панă пӳрт вырăнĕнче чӳклекенсем нумай.

## 693

Йĕрĕх пĕр-пĕр хурама пĕрнере е пĕр-пĕр йывăçра пурăнать теççĕ. Ăна кĕсен кăларать теççĕ. Пĕр-пĕр ача кĕсенленсе кайсан е çăпан тухсан чӳклеççĕ ăна нимĕр пĕçерсе, е тата кĕмĕл окçасем параççĕ. Ăна ватă тăлăх хĕртен полнă теççĕ, çавăнпа кĕмĕл окçа параççĕ. Тата ĕлĕк авалхи çынсем хĕрсене придана* вырăнне парса янă тет.

## 694

Авалхи çынсен йĕрĕх ятлă чир пулнă. Вăл чире ак епле каланă: е çăпана, е кĕçене, е шăтан-юхана йĕрĕх тенĕ. Çынна е çăпан, е кĕçĕ, е шăтан-юхан ерсен йĕрĕх тытрĕ тесе йĕрĕхе чӳклес тенĕ. Авалхи çынсем хурама пĕрни ĕçленĕ те йĕрĕх çав пĕрнере пурăнать тесе çав хурама пĕрнене кĕлетре пĕр кĕтесе çакса усранă. Шăтан-юхан ерсен йĕрĕх валли нимĕр пĕçерсе: «Ват аки, тытрăн-турăн пулсан çырлах», — тесе хурама пĕрне ăшне пĕр кашăк нимĕр янă тата çуллă çатма тĕпне çутнă хăйăпа тăхлан тытса тулматса çав пĕрне хĕрне пурçăн çакнă. Тăхланĕ шăтăклă пулмасан йĕрĕх çырлахмаç тенĕ авалхи çынсем.

## 695

Ваттисем каланă тăрăх, чăвашсем кунта килсенех вĕсенĕн каярахри пек пĕр Турă мар пулнă. Вĕсем ун чухне тĕрлĕрен йĕрĕхсене, киреметсене пуççапнă. Йĕрĕх пуканисене вара чăваш хĕрарăмĕ тумĕ тумлантарса хăйсем тунă та ăна Турă вырăнне шутланă. Вĕсем, ваттисем каласа панă тăрăх, килти телее тытса усранă, пукане çĕмĕрĕлсе саланса пĕтсен кил-çурт та саланать тенĕ. Вĕсене клатавуйсенче, кĕлетсенче усранă. Çулталăкра вĕсене виçĕ хут чӳк тунă: малтанхи чӳкĕ (çуркунне) — ирхи апат, виççĕмĕш чӳкĕ (кĕркунне) каçхи апат çитерни вырăнне шутланнă.

Кам пуканесене кирлĕ маршăн тытнă, ăна çав Йĕрĕх суккăр, алăсăр-урасăр тунă е урăх чире ертсе хытă асаплантарнă. Ун пек чух вара сывалас тесе ку Йĕрĕх пуканисене çырлахтарнă та, çын сывалнă.

Çемьерен çын уйрăлса тухать пулсан (пĕлсех авланнă хыççăн) килти ваттисем Йĕрĕх пукани туса чӳклентернĕ те ăна уйрăлса тухакана парса янă. Ку пукани уйăрăлса тухаканăн кил-çуртне инкекрен-синкекрен пăхса усранă тет.

---

* Парне.

## 696

Алă-ура ыратсан ĕлĕк йĕрĕх пăрахнă. Малтан чуста çăраççĕ, варрине шăтăк тăваççĕ те хушпусен шăвăç татăкĕсене тата çу, кăмрăк хураççĕ. Вара çавна ăçта йĕрĕхлĕ çĕр — çавăнта кайса хураççĕ. Çавăнта хăраса чирлерĕм пуль те, çав Йĕрĕх тытрĕ пуль тесе. Ун пек те иртсе каймасан Йĕрĕхе каçарттарма хăшĕ нимĕр, хăшĕ икерчĕ пĕçереççĕ. Ăна Йĕрĕх икерчи теççĕ.

## 697

Ĕлĕк ват çынсем е тухатмăшсем йăмра çине пĕрне çакнă. Кама та пулсан çилли килсен, çавна йĕрĕх тыт тесе пĕрнине шакканă тухатмăш. Йĕрĕх тытсан çын чирлет е алă сурать, е ура ыратать. Ăна нимĕнле тухтăр та чĕртеймест. Çын чĕрĕлтĕр тесе чустаран чӳлмек тăваççĕ, ун ăшне чустаранах юсман, пĕчĕккĕ йăвасем хураççĕ. Чӳлмекне пĕрне ăшне çын курман чухне хураççĕ. Чӳлмекĕ-юсманне тăва пĕлекен карчăк туса парать. Çакăн хыççăн çын чĕрлет. Юсманне хума кайнă чухне çын тӳр килсен сăмах чĕнмесĕр иртсе каймалла.

## 698

Тĕне кĕмен чăвашсен ĕлĕкхи вăхăтра кашни килĕрен йĕрĕх пулнă тет. Ăна вĕсем тăнăç çĕрте, маччара е урăх çĕрте пĕрне ăшĕнче усранă.

Йĕрĕх хуçисем кама та пулин çилленсен Йĕрĕх пĕрнине шакканă тет. Вара çиллентернĕ çыннисене Йĕрĕх чир-чĕрпе асаплантарнă. Çакна Йĕрĕх тытнă тенĕ. Йĕрĕхпе чирленисем Йĕрĕх хуçисене нимĕр пĕçерсе çитереççĕ. Хуçи апачĕпе кăмăллă пулсан Йĕрĕхĕ таврăнать, чир-чĕрĕ иртет. Кăмăллă пулмасан — татах пырса çитермелле тет.

Пĕр-пĕр çĕрте такăнса, ӳксе ыраттарса хĕне кайсан та Йĕрĕх тытнă теççĕ.

Чир-чĕртен хăтăлма йĕрĕх туса лартаççĕ: чуста тăваççĕ, хĕррине чĕпĕтсе тухаççĕ, варрине путăк тăваççĕ. Унта кĕрпе, пуслăх укçа, çăнăх, кăмрăк хураççĕ те пуç йĕри-тавра çавăраççĕ. Кран урлă каçарса çĕр айне алтса лартаççĕ. Çакăнпа таврăнать тет Йĕрĕхĕ.

## 699

Ĕлĕк пуянсен кĕлечĕсем нумай пулнă. Унта тырри-пулли тăкăнсах ларнă. Пуянсем пушăт сӳнĕ, пушăтĕнчен кӳме тунă, кӳми ăшне пуканесем лартнă. Çав пуканесене вĕсем кĕлете хунă. Йĕрĕх ан çулăнтăр тесе. Çак пуканийĕсем, имĕш, пуянсене хĕн-хур паман, кĕлечĕсене сыхласа пурăннă. Çак пуканийĕсенчен кайран йĕрĕх пулса кайнă тет, çырма-çатрана пурăнма куçнă вĕсем. Кĕлетре те пурăнаççĕ тет йĕрĕхсем.

## 700

Пĕр чăваш ачине ӳслĕк ернĕ, тата унăн ӳчĕ çине кĕсен-çăпансем тухса ларнă. Амăшĕ ялти юмăç карчăкне чĕнсе килне илсе килнĕ те ăна ачине кăтартнă. Юмăç ачан аллине тытса чĕре мĕнле тапнине тата çамкине тытса юн вĕриллĕхне сăнанă. Унтан хĕвĕнчен юмăç пăхмалли хатĕрне (çип вĕçне, çăкăр татăкне) кăларса сылтăм аллипе çиппине усăнтармалла тытнă.

Хăй чĕлхипе пăшăлтатса теменле сăмахсем каланă. Çăкăр татăкĕ сулланма тытăннă. Карчăк кĕç шайне суллама чарса ачан амăшне каланă: «Ачуна Хурăн йĕрĕхĕ тытнă. Çав Йĕрĕхе пĕр çăмарта, вунă пус укçа тата виçĕ мамале парас пулать», — тенĕ.

Юмăç кайсан ачи амăшĕнчен ыйтнă: «Кам вăл Йĕрĕх?» — тенĕ. Амăшĕ каланă: «Йĕрĕх вăл куçа курăнмасть. Вăл çырмасенче, çăлкуççенче, йывăç ăшĕнче, кивĕ çуртра пурăнать. Вăл çынсем панипе тăранса пурăнать. Çынсем ун çинчен мансан вăл вĕсем çине йывăрах мар чирсем (çăпан, шатра, кĕсен-суран) ярать. Вăл укçа, мамале, çăмарта, турăх, пир ыйтать. «Йĕрĕх» тесе вăл пурăнакан вырăна та калаççĕ. Тата хăшĕсем Йĕрĕх ячĕпе пӳрт тӳпине е пăлтăра лăпă* е витре çакса хураççĕ: лăпă е витре ăшне пилеш туратти (ун çумне тăхлан çаврашки çакса) тата пир татăкĕ чикеççĕ. Çав лăпăпа витрене те «йĕрĕх» теççĕ». Çапла амăшĕ ачине чăвашсем «йĕрĕх» тесе мĕне каланине ăнлантарса панă.

## 701

Качча каякан хĕрсене амăшĕсем ĕлĕк кашнинех икĕ пукане (арçынпа хĕрарăм кĕлетки) парса янă. Вăл пуканесене амăшĕ темшĕн хăй хĕрĕ сисиччен, вăл курман çĕре ун япалисемпе пĕрле хурса янă. Качча каякан хĕр амăшĕ пуканесене ăста хунине пĕлсен те пĕртте чарман: хăй пĕлмен пек пулса ирттерсе янă. Амăшĕ вăл пуканесене е хĕрĕ сӳпçи тĕпне хурса янă, е кĕпесем çыххи ăшне хурса янă. Хăшĕ тата тӳшек-минтер ăшне хурса ярать теççĕ.

## 702

Йĕрĕх мĕн япала вăл тесе ыйтсан вĕсем Йĕрĕх мĕнлине эпир пĕлместпĕр теççĕ. Çта пурăнать вăл тесе ыйтсан эпир ăна та пĕлместпĕр теççĕ. Унăн ячĕпе пирĕн чăваш çыннийĕн хуралтисенче: кĕлетре-мĕнте е ытти çĕрте — пуркă çакăнса тăрать, çав пурка Йĕрĕх пĕрми тетпĕр теççĕ. Унăн ăшĕнче пукане тавраш выртнине халиччен те эпир курма мар, илтмен теççĕ. Йĕрĕх çынна тĕрлĕ ерекен чирпе аптратать имĕш: кĕсен, çăпан, кăрчанкă, кашкăр шатри тата ытти чирсемпе те. Çав чирсенчен хăтăлма Йĕрĕхе тесе тăхлан шăратса, сивĕ япала çине тумлатса, çав тăхланăн пĕр шăтăкĕнчен çиппе тирсе хай Йĕрĕх пĕрми çине тăхланĕпе шал еннелле çакса хуратпăр теççĕ. Йĕрĕх тытрĕ пулсан тасалтăр тесе. Хăшĕ имĕш çав пĕрме ăшне çуллен пилеш çупкăнĕ татса пăрахаççĕ, мĕншĕн пăрахнине хатĕр те пĕлместпĕр теççĕ. Авал камăн та камăн килĕнче Йĕрĕх пулнă, çав кĕлетрен хĕр ача ӳссе качча кайсан хăйсен хĕрне валли те Йĕрĕх пĕрми туса уйăрса парса янă. Вăл та вара çав йĕрĕхне ашшĕ-амăшĕ килĕнче епле, çуллен çавăн пек чир-мĕн çаклансан тăхлан шăратса çакса тирпейлсе хунă. Йĕрĕхе илсе пырсан хăш хуралта малтан хунă, вăл вара ялан çавăнта кăна çакăнса тăнă, урăх хуралта çакса хума юраман. Пĕлме çук, пĕр-пĕр япала-мĕн пулсан е кил хуçи пĕлсе çука юлсан, çав кĕлетне сутса ярсан илекен чăвашне çав йĕрĕхне пăрахса хăварма юраман, ялан хуралтине çта куçарнă, унта илсе кайнă. Кĕлечĕ çунса кайсан йĕрĕхĕ те çунса кайнă, илсе тухма ĕлкĕрсен илсе тухма тăрăшнă. Çапла ерекен чирсем тĕшĕнчен хăтăласшăн унăн ятне те çавăнпа та «йĕрĕх-тĕр» теççĕ.

---

* Хулăран е пушăтран авса тунă çатан.

## 703

Паркӑлтак ҫырминче халӗ те пи-итӗ пысӑк ватӑ хурӑн ларать. Ӑна Йӗрӗх хурӑнӗ теҫҫӗ. Ҫын-мӗн чирлесен, хӗне кайсан, йӗрӗх ҫыпӑҫсан ӗлӗк ҫакӑнта ҫӑкӑр, ҫимелли мӗн те пулин килсе пӑрахнӑ. Ал шӑлли, пир татӑкӗсем хурса хӑварнӑ, кашни иртен-ҫӳрен те ҫакӑнта чарӑннӑ, парнесем хурса хӑварнӑ.

Ҫак Йӗрӗх хурӑнне Киремет йывӑҫҫи тесе те калаҫҫӗ.

## 704

Вӑл йӗрӗхсен ячӗсем ак ҫапла: Саток, Тихӑн арӑм кокри, Якур арӑм варӗ, Пакша, Хурлӑхан варӗ.

Вӑл Саток ял варринче выртать. Вӑл пысӑк столпа* ҫинче. Онта ӗлӗк пусӑк сат полнӑ. Ҫав столпа ҫине пӗр Торӑ алтса лартнӑ. Ҫав сат халь ҫонса кайнӑ та, он вырӑнче хӑрӑк омлоҫҫисем лараҫҫӗ. Ҫавсем хушшинче Йӗрӗх юпи выртать. Унӑн омлисене татса ҫисен ҫӑвара кӗсен тапса тухать. Ҫавна кайса чӳклемесен нихҫан та ҫав кӗсен пӗтмест. Ӑна чӳклеме пӑтӑ-нимӗр пӗҫерсе каймалла. Ҫав пӑтӑ-нимӗрсене шапа хуранӗ ҫинче пӗҫереҫҫӗ. Ҫавна чӳкленӗ чух пӗр кашӑк, тепӗр кашӑк Йӗрӗхе тӑкса парать. Ҫавӑнпа та ҫырлахмасан кулачпа-пӗремӗкпе чӳклеҫҫӗ, унпа та ҫырлахмасан ҫавна ҫырлахтарма пукане туса ӑсатма каяҫҫӗ. Ҫавӑнта кайнӑ чух пӗр пӗчӗк арча туса арчи ҫине пукане тутри тултарса та ӑсатса яраҫҫӗ. Ӑна ӑсатма юпа кутне кайса пӑрахаҫҫӗ, ҫавӑнпа уйрӑлать теҫҫӗ ҫынсем.

Тихӑн арӑм кукрине ак ҫапла киремет тӑваҫҫӗ Йӗрӗхе ҫав кукӑр ҫӑл кутӗнче. Унта шыв патне кайсан хӗрарӑмсем пит хытӑ хӑраҫҫӗ. Кашни ҫул ҫӗн ҫынсем кайса йӗрӗхе ҫырлахтараҫҫӗ. Ӑна шыв ҫулӗ пуҫлаттарнӑ чух сӑрапа, ҫӳхӳпе кайса: «Йӗрӗх, ҫырлах», — теҫҫӗ. Вӑл ҫӗн ҫын кашни шыв патне каймассерен пӗр витре шыв тӑкса парать пӗр ҫулталӑк. Ҫав Йӗрӗх патне пырса витлесен ҫынна пуплеми тӑвать. Ҫапла тусан Йӗрӗхе кайса ҫӑкӑр-тӑварпа чӳклеҫҫӗ. Ҫав Йӗрӗхе ҫӗн ҫынсем венчете кайиччен ҫур ҫӗр вӑхӑтӗнче кайса: «Йӗрӗх, пире лайӑх ҫӗре вырӑн тупса пар», — теҫҫӗ.

Якур арӑм варӗ йӗрӗхне ак ҫапла ҫырлахтараҫҫӗ. Унта ӗлӗк Якур арӑм вилнӗ. Ҫавӑн вырӑнче халь Йӗрӗх пур. Вӑл унта лаша ярсан лашана ниҫта та ямасть, лашана ҫав кукӑра илсе кӗрсе вӗлерет. Вӑл вырӑнта питӗ тарӑн ҫыр юхса хӑпарать. Унта кашни ҫулах кайса лаша пусса чӳкленӗ. Халь кашни ҫулла кӗтӳ кӑларнӑ чух кайса пӗр чӑх, пӗр путек пусса параҫҫӗ. Унпа ҫырлахмасан пӗр виҫӗ эрнери мӑкӑр кайса параҫҫӗ. Якур арӑм варӗ питӗ тискер, кашни ҫӗн уйӑхах унта Йӗрӗх вырӑнтан вырӑна куҫать теҫҫӗ. Куҫнӑ вӑхӑтра ҫынна ерсен виҫ-тӑват ҫулсӑр уйрӑлса каймасть теҫҫӗ. Ӑна уйӑрма питӗ кансӗр. Ӑна валли тӑмран ҫын пек туса пӑрахаҫҫӗ. Ҫавӑнпа анчах уйрӑлса каять теҫҫӗ.

Пакшана ак ҫапла чӳклесе ҫырлахтараҫҫӗ. Ҫав Пакша лапара — ял варринче. Ҫавӑнта кашни ҫулах ҫумӑр ҫусан шыв пухӑнса тӑрать. Унта ачасем выляма каяҫҫӗ. Унта вылянӑ чух кам ачи ҫав Пакша ҫине кӗрсе каять, ҫавӑн урине, тути-ҫӑварне кӗсен тапса тухать. Ҫав кӗсен ҫырлахтармасассӑн нихҫан та пӗтмест тет, ӑна кашни пӗчӗк ача амӑшӗсем кайса чӳклеҫҫӗ. Ҫав кӗсен пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна сикет тет те арамасланса каять тет. Ҫавна

* Юпа.

чӳклеме юхмалла икерчĕ пĕçереççĕ те çырлахтарма каяççĕ. Унта кайнă чух пĕр çынна курсан: «Çавна ер, йĕрĕх, часрах», — тесе чӳклеççĕ.

Хурлăхан варне ак çапла çырлахтарса чӳклеççĕ. Вăл Хурлăхан варĕ питĕ пысăк пĕве. Çав пĕвере кашни çулах ачасем шыва кĕреççĕ. Çимĕкчен çиччĕ кĕмелле теççĕ çав пĕвере. Кам ачи шыва кĕмест, çав ачана кĕсен-çăпан тапса тухать. Çав кĕсене пĕтерме йăмра хупахĕ сӳсе килсе çынна вĕретсе ĕçтереççĕ. Унта йăмра питĕ нумай, çавăнта çăмарта пĕçерсе чӳклеççĕ. Çавна чӳклесен ачисен кĕсен-çăпанĕ пĕтет. Унта çулла хурлăхан çырли питĕ нумай пулать. Çавна вĕремсĕр татса çисен алли ним те тытайми пулать. Ăна Илем иртсен ачасем кайса çиеççĕ пурте.

### 705

Ĕлĕк-авал пĕр Йĕрĕх ятлă карчăк пулнă. Йĕрĕх карчăк кĕсенлĕ-çăпанлă, чирлĕ-чĕрлĕ, ахлатса, йĕрсе çӳрекенскер пулнă теççĕ, çавăнпа Йĕрĕх тенĕ тет. Йĕрĕхе пур чăвашсем те ĕненсе пурăннă. Чăвашсем унтан пит хăранă. Йĕрĕх вăл кĕсен-çăпан кăларать, куçа та пăсать тенĕ. Кĕсен-çăпан тухсан е куç пăсăлсан юмăçа кайнă та, юмăç каланă: «Сана, ара, килти клетри е нӳхрепри, е лаçри Йĕрĕхӳ хĕн кăтартса усрать, уна парнесем парса çырлахтарас пулать». Йĕрĕхе асăнмалли йăла выранĕ килте: кĕлетре, нӳхрепре, лаçра — пулнă, Йĕрĕхе асăнса парнесем панă, пуринчен ытла ӳссе ларан хăвăл йывăççенче пулнă. Чир-чĕр, кĕсен-çăпан кăларнăшăн юмăç каланипе е чăвашсем хăйсен ăсĕпех чир-чĕр, кĕсен-çăпан кăларнă Йĕрĕхе акă çакă япаласемпе çырлахтарнă. Пĕр майăр пек тăхлана çунакан вут çине тытса шăратнă, шăратнă чух тумланă вут айне кусар е кăмака питлĕхĕ тытса тăнă, тăхлан шăранса тумласа тимĕр çине шăтăклă сарăлса ансан вара Йĕрĕх çырлахнă, çав сарăлса аннă тăхлана шăтăкĕнчен çиппе тирсе, пурçăнсем çакса ытти япаласемпе тата 3 пус пысăкăш чуста, пурне пĕрле илсе кĕлете, нӳхрепе е лаçа пĕрене çумне пăтаран çакса янă е ӳсекен, ялти çырмари, уйри хăвăл йывăç çине çакса янă, кĕпер айне те çакни пур, капла тунипе вара Йĕрĕх çырлахнă. Тата ĕнтĕ шăратнă чух тăхлан чăмăртанса юхса ансан вара Йĕрĕхе чăмăртанă, шăтăксăр тăхлан кирлĕ пулман. Йĕрĕх карчăка кĕмĕл вырне пулнă сурпан çакки çакса паратпăр тенĕ. Тата пурçăн çипсемпе илемлĕ тумлантаратпăр тенĕ, кĕркунне пулсан Йĕрĕх ятне асăнса пит çуллă нимĕр пĕçерсе çинĕ, вара Йĕрĕх çырлахнă.

## Ял-йыш управлăхĕ. Тӳркилли. Мăчавăр

*Тӳркилли — ял-йыш е çĕр пĕрлĕхĕ турăсемпе ырăсене асăнса, пуççапса, апат-çимĕç хывса тăмалли çывăхри (урам е çул-çырма патĕнчи) ятарлă вырăн. Вăл уйрăм çуртра, пĕр-пĕр уйрăм ларакан хуралтăра, йывăç айĕнче, пĕр-пĕр паллă шырлан-тăвайккире, çул тăваткăлĕнче пулнă. В.К.Магницкий тӳркиллине «дом судьи» тесе каланă. XIX—XX ĕмĕрсенче тӳркилли пĕлтерĕшне чылай пăтратса янă, хăйне тĕллĕн хăват е Вăйкилли вырăнне хунă. Апла пулсан та унăн тĕп пĕлтерĕшĕ— ырăсене тата вилнĕ ваттисене пĕр-пĕр сăлтавпа çула май асăнмалли вырăн.*

*Тӳркиллисен кашнин хăйĕн пайрăм ячĕ пур. Ячĕ хăш вырăнта ларнинчен, хăш хăвата мала кăларса асăннинчен е тата ăна пăхса тăраканĕн ятĕнчен килнĕ.*

*Христос тĕнне йышăнсан тӳркиллисем вырăнне часанисем (часовньăсем) лартма пуçланă.*

*Пысăк тӳркиллисен ячĕсем таврипех паллă пулнă. Вĕсем, Кĕçĕн киреметсем пекех, йĕрĕхлĕ-пуканеллĕ пулма пултарнă. Ун пек чухне тӳркиллине тӳрлетме пысăк парнесемех (вăл шутра чĕрĕ автансем, хурсем, кăвакалсем, путексем) панă. Унта пырса янă выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке çынсем тивмен. Вĕсем яла пырса кĕрсен хăваласа яман, ыттисемпе пĕрлех усранă.*

*Тӳркилли, киремет пекех, таса вырăн. Ăна варалама, çĕмĕрме чарнă. Унта усал калаçма, кăшкăрашма, вăрçма, çиленнине палăртма юраман.*

*Тӳркиллинче ырăсемпе турăсенчен, несĕл ваттисенчен ăнăçу ыйтнă.*

*Тӳркиллин ятарлă хуралçи пулман. Ăна ял мăчавăрĕ пăхса тăнă.*

## 706

Тата пирĕн ялта Тӳркĕлли полнă тет. Ăна вара е кăвакал, е хор, е тин çоралнă путек панă тет. Çав Тӳркĕлли çор çĕр çитсен вара тенкĕсем çакса ярса шăнкăрт! шăнкăрт! шăнкăртаттарса орам тăрăшпе анчах çӳренĕ тет. Халь çав Тӳркĕлли çок, мĕншĕн тесен ăна халь никам та пăхмаç. Вăл Тӳркĕлли как хăйне пăхма пăрахсанах кайран вара орам тăрăшпе макăрса çӳренĕ тет, вара кайран качча кайнă теççĕ.

## 707

Тӳркĕлли пĕрнепе çакнă япала, ăна чӳк тăваççĕ: кăвакал пусаççĕ, хур пусаççĕ, парнене тесе туттăр-сурпан параççĕ. Хуçине çиллентерсессĕн пĕрер çын е вăрçсан, е пĕрер сиен тусан хуçи кĕрет те пĕрнене силлет: çавна кайса кур тет. Унтан вара вăл çын чирлесен хурсем пусса чӳк тăвать те парне пырса парать, е укçа, е туттăр-сурпан парать. Хуçи вара пухăннă укçасемпе пыл хывать те, хăна чĕнет те ĕçет е пасара каять те хăйне валли пĕрер япала илет.

## 708

Кĕш-кĕш чĕмре чунлă теççĕ: тӳркилли чирĕ теççĕ. Пирĕн ялта тӳркиллине пĕр ял вырăнĕнчи пахчара пурăнать теççĕ. Тӳркиллине пĕр çитĕннĕ питĕ муллă хĕр теççĕ. Çав пахча патĕнче çынпа вăрçсассăн, тула тухсассăн, çĕнĕ çынсем çав пахча патĕнчен иртсе çӳренĕ чухне чĕркуçленсе салам памасан çав тӳркилли тытать теççĕ. Тӳркилли тытсассăн çынна е çăпансем тухаç тет, е куçне шур илтерет, е шăлне суртарать, пĕчĕк ачасен пуçне çăпан — йытпуç текеннине ярать тет, вĕлерекен чирех ямас теççĕ. Тӳркиллинчен хăтăлас тесен çав пахчана тенкĕсем, нухратсем, укçасем пăрахççĕ, кăвакал, чăх чĕпписем.

## 709

Чăвашсем чăн аслă Турă çӳлте, пĕлĕт çинче, пурăнать тесе ĕненеççĕ. Вĕсенĕн Çӳлти аслă Турăсăр пуçне ытти турăсем те пит нумай. Çав турăсем хушшинчен вĕсем хăш-хăш кил картинчи кĕлетсенче Тӳркĕлли пур тесе ĕненеççĕ.

Çав Тӳркĕлли çынна çăпан кăларать те куçа пăсать теççĕ; унтан ытла вăл çынна ниепле сиен те тăваймасть теççĕ. Çавăнпа куçа тӳрлетес тесен вĕсем юмăç патне каяççĕ те юмăç каласа янă тăрăх Тӳркĕлли кĕлечĕ умне е укçа кайса пăрахаççĕ, е нимĕрпе кайса чӳклеççĕ. Çапла тусан вара тӳрленет теççĕ.

Кĕлетре Тӳркĕлли пуррине вĕсем тĕлĕкре курса пĕлеççĕ. Вĕсем ăна те асăнса выртса кураççĕ, те вĕсене хăйсене курăнать, ăна лайăхах пĕлейместĕп. Пĕрре çапла пирĕн пичче çывăрса тăчĕ те хăйне тĕлĕкре Тӳркĕлли курăннине каласа кăтартрĕ. Пирĕн çумра пĕр Антун ятлă çыннăн йывăç пахчинче пĕр кĕлет ларать, вăл кĕлетре пирĕн ялсем Тӳркĕлли пур тесе ĕненеççĕ. Пирĕн пичче çав-çав кĕлетре куртăм тесе каласа кăтартрĕ. Вăл вăхăтра пирĕн пиччене питĕ пысăк çăпан тухнăччĕ, çав çăпанпа вăл касхине яланах йынăшса выртатчĕ. Пирĕн пичче çав кĕлет шăтăкĕнчен çынсем Тӳркĕллине асăнса пăрахнă укçана илнĕ курнать, унтан укçа илсессĕн хирĕç е пĕремĕк, е кулач татăкĕ пăрахмалла тет те, вăл вара ним те тумасть тет. Пирĕн пичче ăна илнĕ те апла тума пĕлмен. Вăл хăйне часрах е укçа памасассăн, е нимĕрпе чӳклемесессĕн çилленсе çăпан кăларать тет те çĕрле çăпан тухнă çын патне пырса унăн çăпанне чăмăртаса ыраттарать тет, çăпан тухнă çын çав ыраттарнипеле йынăшать пулать вара.

Пирĕн пичче ирхине тăчĕ те акă çапла каласа кăтартрĕ: «Эпĕ йынăшса выртсан-выртсан пăртак ыйха кайрăм. Тĕлĕкре ман куçа хамăр кӳршĕри Антун пичченĕн пахчинче ларакан йывăç айĕнчен пĕр шур сухаллă ватă тутар тухрĕ пек, урине пушмак тăхăннă пек, унăн хыçĕнчен тата икĕ пĕчĕккисем тухрĕç пек те, ватти ик пĕчĕккисене: «Вăн çав килте пĕр кун пĕр ача пирĕн шăтăкран виçĕ пус укçа илсе кайнă, айта халь унăн çăпанне кайса чăмăртар», — тесе каларĕ пек те, тӳрех манăн патăма килчĕç пек. Ватти вара: «Е укçана час пырса пăрах, атту тата кăларатпăр», — тесе çăпана чăмăрта пуçларĕ пек тет. Эпĕ хай ыратнипе вăранса кайрăм та, нимĕн те курăнми пулчĕ», — тесе каласа кăтартрĕ.

Тӳркĕллине çавăн пек тĕлĕкре курнине нумайăшĕ каласа кăтартаççĕ. Ыттисем унăн сăмахне ĕненсе кĕлетре Тӳркĕлли чăнахах пур иккен тесе ĕненеççĕ.

## 710

Миханьккa карчăкĕ Тупăç сăрчĕ çине пăхса кĕлĕ калать: «Çырлах, турă, çырлах! Кепе, эс те çырлах! Туркĕллинчи ырă, сан умра калатăп...»

Тĕлĕнтерекенĕ çакă пулчĕ: «Телейĕме Атăл куçĕнчен, Сĕве пуçĕнчен, асатте çĕрĕнчен çавăрса кил!» — тени.

Йĕкерсен Тӳркĕлли — шыв хĕрринче, Тарăнвар урамĕ пуçĕнче.

## 711

Тӳркĕлли, назв. духа (из *тӳрĕ* + *кĕлли*). Лешĕ, ултавăç, сан куçа çанти Тӳркӳлли (Тиркӳлли) тытнă тет; сан унта пăртакçă тутăр çине çыхса, кĕрпепе пĕр-икĕ пус укçа кайса çакас пулать, вара тӳрленет тет.

## 712

Пĕр-пĕр хĕр хăй пĕчĕк чухне пуканесем тăвать; çав пуканесене качча кайнă çĕре илсе каять. Унтан вара вăл пуканесене юратнă хĕрсене парса янă, çавсемпе пĕрле Йĕрĕх кайнă. Çав пуканесем çĕмĕрĕлмесĕр çичĕ сыпăка çитсессĕн Тӳркĕлли пулнă вара.

Пĕр пуканене пĕр пăсмасăр çичĕ сыпăка çитиччен хĕртен хĕре парса ярсан Тӳркĕлли пулать (Йĕрĕх).

Тӳркĕлли — ватă тутар тет; вăл вара пĕр-пĕр çын кĕлетне кĕрет тет те ниепле те тухмасть тет. Пирвай Тӳркĕлли хуçасене пĕлмешкĕн тĕлĕкре ватă тутаррăн курăнса хăй пурăнакан кĕлетне кĕрсе кайнă пек курăнать тет. Унтан вара пирвай ашшĕне е çăпан кăларать, е шыçтарать тет; унтан ывăлĕсенĕн пуçĕсене кĕсен кăларать тет. Вара ăна хуçи кăвакал илсе пăтăпа чӳклет тет те, тин тӳрленет тет. Çапла вара пĕрре чӳк туса çырлахтарсан хуçине пĕрре те тытмасть тет. Тăрсан-тăрсан вара кӳршисене тыта пуçлать тет. Хуçи вара çав тытать тесе каласа ярать тет те кĕлете чĕрес çакса ярать тет. Кӳршисем вара унта укçа кайса ярассĕ тет. Укçи нумай пухăнсан хуçи çав укçана пуçтарса каллах пасартан кулаç илсе чӳкĕ тăвать тет. Хуçи Тӳркĕллине çиллентерсен урине шыçтарса вара виличченех тӳрлентермест тет.

## 713

Пĕр чăваш ялĕнче Петĕр Çтаппанĕ ятлă хресчен пурăннă. Пĕрре ирпе Çтаппан хăйĕн анкартине выльăхсем пăхма кайнă. Итем патне çитсен вăл курах кайнă: итем çинче кушак тĕслĕ темле кайăк вылять, хăйĕн пуçĕнчен çутă тухса тăрать-мĕн. Çтаппан çавна курсан тĕлĕннĕ те, хăранă та. Вăл хăй курнине хăйсен ялĕнчи çыннисене каласа кăтартнă. Лешсем ăна каланă: «Эсĕ Мĕтри Микулайĕ патĕнче пурăнакан Тӳркиллине курнă пулмалла», — тенĕ.

Тепĕр кун çав Çтаппанах ĕçкеленĕ хыççăн хăй килĕнче çывăрнă. Сасартăк ун хăлхине алăка шакканă сасă илтĕннĕ. Вăл тăнă та çенĕк алăкне уçса пăхнă. Алăк умĕнче тепĕр ялта пурăнакан паллакă хĕр тăрать-мĕн. Хĕр çак ялта пурăнакан Мĕтри Микулайăн пӳрчĕ ăçтине кăтартса пама йăлăннă. Çтаппан ăна Микулайăн пӳртне кăтартнă... Епле тепĕр хут çывăрма выртнине вăл пĕртте астуман. Ирпе вăраннă Микулайăн пӳртĕнче. Унта епле кĕрсе выртнине вăл хăй те пĕлмен, кил хуçи Микулай вăл кĕрсе выртнине курман та, илтмен те. Çтаппан та, Микулай та Çтаппана тепĕр ялта пурăнакан Тӳркилли чĕнсе Микулай патне илсе кайнине ĕненнĕ.

«А кам вăл Тӳркилли?» — тесе ыйтнă пĕр ача. Ăна пĕр чăваш ăнлантарса панă: «Тӳркилли вăл Киреметрен кĕçĕнрех, Йĕрĕхрен аслăрах сывлăш (Турă). Вăл, чăвашсем ĕлĕк ĕненнĕ тăрăх, халăха усал тăвакан сывлăш. Анчах ăна парнесем (укçа, пир татăкĕсем) памалла пулнă тата хурпа е кăвакалпа, пăтăпа, сăрапа чӳк тумалла пулнă. Вăл пĕр ялта е ялсен ушкăнĕсенче пĕрре çех пулнă. Вăл ялсен сыхлавçи пекки пулнă. Вăл этем сăнлă та, урăх чĕр чун сăнлă та пулма пултарнă. Тӳркилли пурăнмалли вырăнĕ ампар е мунча, е юри тунă пĕчик çурт пулнă. Хăш-пĕр çĕрте Тӳркилли кĕлеткине пукане пек туса лартнă. Тӳркиллине пăхса усракан килте аслă ывăлне авлантарнă вăхăтра Тӳркиллине те авлантарнă, ун валли хĕр пукане тата çӳпçе тунă, çӳпçи ăшне пĕчиккĕ кĕпесем тата пир татăкĕсем чикнĕ. Çав килтех хĕрне качча панă чухне пуканине упăшкин килне туйпа ăсатнă». Çапла каласа панă чăваш.

714

Пӗр лаҫăра шурă сурпан ҫакăнса тăрать. Унта укҫа хутаҫҫи ҫакнă. Ҫавна Тӳре теҫҫӗ. Ҫав Тӳре хутаҫҫине пӗр чӳк хыҫӗнчен килӗшпе выльăх-чӗрлӗхшӗн сывлăх пар тесе укҫа хумасан тытать теҫҫӗ. Укҫа хурсан кӗсен-ҫăпан, юханлă чир ҫухалать теҫҫӗ. Ҫавăнпала ăна кӗркунне, кӗрхи сăра иртсессӗн, пӗр ҫур яла яхăн пулӗ укҫа пырса хураҫҫӗ. Ёлӗк вăл хутаҫра укҫа тулсассăн вӗсем ăна пӗтӗм ăратнипе пӗр ҫӗре пуҫтарăнса ҫав укҫапа пыл илсе йӳҫӗтсе, ҫавна асăнса темӗн чухлӗ юсман, вӗт йăвача пӗҫерсе, каҫхине ҫавна асăнса, чӳк туса ҫӗрле ҫӗр хута ӗҫнӗ теҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ, эпӗ астăвасса, вăл хутаҫа укҫа нихăҫан та тулман. Кам унтан хăраманни ҫын курман чухне кӗрсе эрех ӗҫме илсе тухаҫҫӗ е ачасем выляма илсе каяҫҫӗ. Пирӗн асатте ҫунсан та ҫав Тӳрене пăрахман. Унăн укҫисене йӗре-йӗре пухса каллех пӗр кӗлете хунă. Ҫавăн чухне вӗсем шухăшланă: салтакран ҫав Тӳре савăрса килчӗ, халӗ те ҫурт тума пулăшӗ тенӗ. Ҫавăнпала ăна ун чухне вӗсем пӗтӗм ăратнипеле пуҫтарса пӗр аван икӗ хутлă (алҫиллӗ) кӗлет туса, ҫав кӗлете сурпанпа укҫа хутаҫҫине ҫакса хунă. Ҫав хутаҫҫа укҫине хунă. Пурăнсан-пурăнсан, импичче салтакран килсен, пирӗн аттесем вăл кӗлетрен сурпанпа укҫа хутаҫҫине урăх начар ҫăнăх лаҫҫине ҫакса хунă. Халь те ҫав лаҫра ҫакăнса тăрать.

## Халăхпа ҫӗршыв управлăхӗ. Киремет. Сăрманчă. Мамале

*Темиҫе хутлăх халăхӗпе пӗрле пухăнса калаҫмалли, чӳклемелли таса вырăн — Киремет. «Киремет» сăмах пӗлтерӗшне чылай тӗпчевҫӗ ăнлантарнă. В.Г.Егоров чӗлхеҫӗ ăна арабларан «хӳрмет» (таса вырăн) тесе куҫарнă. Вăл авалхи еврейсен сăмахӗпе те тӳрӗ килет.*

*Чăваш халăх сăмахлăхӗнче «киремет» сăмаха тем тӗрлӗ ăнлантарни пур: пӗр халапӗнче вăл — Турă пиччӗшӗ пулнăскер, тепринче — хăй Турă, виҫҫӗмӗшӗнче — хаяр хăват, шульăш. Вăхăт иртнӗҫемӗн пӗлтерӗшсем улшăнса пыраҫҫӗ, хăватсем пысăккинчен пӗчӗкки патне куҫаҫҫӗ, юлашкинчен вара асран пачах ҫухалаҫҫӗ.*

*Пӗтӗмлетсе пăхсан «ырă» пӗлтерӗшӗпе Киремет хăй пӗрре кăна пулни курăнать. Унăн йышӗ (амăшӗ, ашшӗ, ачи-пăчи) тата унăн хыпарҫисем, умтăранӗсем, кӗтнеҫҫисем тата ытти итлекенӗсем пур.*

*«Таса вырăн» пӗлтерӗшӗпе Киремет каллех тӗрлӗрен: Аслă, Вăталăх тата Кӗҫӗн кириметсем пулаҫҫӗ. Вăталăхӗпе Кӗҫӗннисем Аслă киремет тавра тăраҫҫӗ. Вӗсен хăйсен пайрăм ячӗсем пур. Кӗҫӗннисемпе Вăталăххисем Аслине пăхăнаҫҫӗ.*

*Ялпа халăхăн куҫса кайма тивнӗ чухне Киремет вырăнӗ Кивӗ киремет ятпа юлнă, вăхăтран вăхăта (ҫулталăкра пӗрререн кая мар) ун патне ялтан чӳкпе килсе кайнă. Аслă Кивӗ кириметсене ҫынсем XXI ӗмӗрте те ҫӳреме пăрахман-ха. Вӗсем «Вылăра выртан ырра», «Пӳлерти Валем хуҫа ыррине», «Сурăм кириметне» кайса килтӗмӗр теҫҫӗ.*

*Киремет вырăнӗ мӗнлине тӗплӗ ҫырса хăварнă. Унта таса шыв (ҫăлкуҫ), ҫӳллӗ вырăн (тăвайкки е тӳпем), пысăк йывăҫ (Пурнăҫ е Тӗнче тӗнелӗ), чӳклеме лаптăкӗ (тикӗс вырăн) пулмалла. Кириметре кăвайт-вучах, Керем ҫурчӗ, апатҫимӗҫ сӗтелӗсем, выльăх-чӗрлӗх кӗтесӗ тата ытти те пулаҫҫӗ.*

*XX ӗмӗр тӗлне халăхра Хаяр киремет (Эсремет) ҫинчен каланисем ытларах упранса юлнă. Тӗрӗссипе, эсремет — чăтлăхра, ҫырма-ҫатрара вăрттăн*

*чӳклемелли шаманла вырăн. Унта тухатмăшсем, сулуçă-суруçăсем, пăскăчсем хуçаланаççĕ. Вăл чăваш тĕнĕпе мар, тĕшмĕшĕпе çыхăннă. Апла пулин те Киреметпе Эсреметсем пĕр-пĕринчен инçе мар вырнаçнă. Тĕслĕхрен, Муркаш районĕнчи Каршлăх вăрманĕнче Сартон киремечĕпе пĕр çырмарах Хуратон эсремечĕ пур, Атăл çинчи Амаксарта Пихампар киреметĕнчен инçе мар Хурашур эсремечĕ упранса юлнă. Эсреметре Турра асăнман, хаярсемпе усалсене тилмĕрнĕ.*

*Киремет — халăхпа пĕрле пухăнса канаш тытмалли вырăн. Аслă киреметре 9 е 12 çулта ирттерекен мăн чӳклемесене чăваш тĕнне упракан аслă мăчавăрсем — элменсем, мамалесем, ламсарăксем (ламшарсем) пынă. Мăн чӳклемене Аслă киремет таппинчи (ямахатĕнчи) мăчавăрсем, элтер-элменсем, Вăталăх тата Кĕçĕн киреметсене пăхса тăракансем пурте хутшăннă.*

*Аслă чӳклемесен хăйсен кĕллисем, сăрманĕсем пур. Вĕсене туллин те пĕтĕмĕшпех ятарлă сăрманчă каланă. Чӳк парнисене турăсемпе ырăсене вĕсен пĕлтерĕшне кура парса пынă. Парнелĕх апат тĕрлĕ: лаша-вăкăртан пуçласа юсман-йăвача таранах. Мăн чӳклемере «мамале укçи» пухнă. Мамалене пама кашни чунран пĕр укçа пулмасан пĕр тăхлан татăкĕ (нухрат) е йывăç патакĕ юранă. Мамале укçи тăрăх халăх шутне пĕлнĕ.*

*Аслă Киремет йăли-йĕркинче ытти çĕрти хайлалăх (Уша юпи сăмахĕсем, Вăйкилли кĕллисем, Тӳркĕлли сăвапĕсем тата ытти те) пĕтĕмпех пĕрлешсе тăрать.*

*XIX ĕмĕрте православипе ислам миссионерĕсем е XX ĕмĕрте студентсем çырса илнĕ киремет халапĕсем тулли мар. Вĕсенче тиркевлĕ куçпа çырни, юри пăтратса пĕтерни нумай. Тĕп хайласем «Турă кĕнекинче» пулнă, вĕсен тĕпренчĕкĕсем упранса юлнă.*

### 715

Киремет — Турă. Киремет туррине асăнмалли вырăн. Киремет туррине кĕлтуса ирттерекен уяв. Авал Киремет ырă Турă пулнă тет.

### 716

Киремет тесе тытакан вырăна калаççĕ. Ун пек çĕрте усал ĕç тума юрамасть, йывăçа хуçма юрамасть, шыв ĕçсен çу сĕрнĕ çăкăр е çăмарта пăрахса хăварас пулать.

### 717

Киремет вăл çын пулнă тет. Вăл питĕ пысăк тухатмăш пулнă. Вăл пурăнакан сăрт çинче икĕ пысăк шăтăк пулнă. Шăтăкĕн хуппи пулнă. Çынсем Киремете пуççапма пырсан çав шăтăка укçа пăрахнă. Киремете хывнă вăхăчĕ иртсен çав укçана кайса пуçтарнă та ĕçнĕ.

### 718

Киремет вăл — аслă Турăсенчен пĕри. Киремет — пурне те куракан, пурне те пĕлекен Çӳлти Туррăн пĕрремĕш ачи пулнă. Унăн ăрăсĕ* асла килнĕ — чăвашсене Киремет телей валеççе, тĕрлĕ инкек-синкекрен упраса пурăннă. Çавăнпа чăвашсем ĕлĕк вăйлă та аслă пулнă.

* Телей, шăпа.

Çапла каласа кăтартаççĕ. Мĕн пĕчĕкрен Киремет шап-шур урхамахпала пĕлĕтре чуптарса çӳреме юратнă. Пĕррехинче çынсем шуйттансем хĕтĕртнипе çавăн лашипеле чаплă кӳмине туртса илес тесе кавар тунă. Вара Çӳлти Туррăн ачи телей валеçме тухсан чăвашсем ăна тискеррĕн асаплантарма тытăннă. Кайран Çӳлти Турăран хăранă та хăйсен усал ĕçне пытарас тесе ун виллине çунтарса янă, кĕлне çилпе вĕçтерсе салатнă. Çавăн кĕлĕ ăçта çитсе ӳкнĕ, çавăнта кайран Киремет йывăççи — юман, çăка, хурама — шăтса тухнă.

Çав тертлĕ çĕрти Киремет йывăççисенче Çӳлти Туррăн пĕрремĕш ачин чунĕ пурăнать тет.

Вăл çынсене телей валеçсе парас тенĕ, лешсем вара ăна тискеррĕн улталанă. Киремет çакна нихăçан та манаймасть. Çилли килнĕ чухне питĕ усал, пит хаяр Киремет. Халăх вара Кирeмете ялан юрас тесе, ăна килĕштерес тесе тем тĕрлĕ парне парать. Малтан чăвашсем Киремете урăхла парне кӳнĕ — хĕр тытса панă тет. Каярахпа ку йăла кивве юлнă тет, вара выльăх пусса чӳк тума тытăннă.

## 719

Куçса килсенех кунти чăвашсем Киремете хытă пуççапнă. Киремет — ял варринчи Аслă (хатарлă, чӳклĕ) çăл патĕнчен хăпаракан тăвайкки. Вăл вăхăтра Киремет тени «Турă тăвĕ» тенине пĕлтернĕ. Кашни çулах пĕрре Кирeметре пысăк чӳк тунă. Вăл чӳк валли кашни килĕренех ĕçме-çиме, укçа пуçтарнă. Чӳк тунă чух вара ял халăхĕ Киреметре сăра ĕçнĕ, выльăхсем пуснă, пăтă, çăмарта, çăмарта хăпартни, лапшинник т.ыт.те пĕçерсе пĕрле пуçтарăнса çинĕ. Унтан вара халăхран пуçтарнă укçине чӳлмексемпе Киремете чавса лартса хăварнă. Ку Турра парне панине пĕлтернĕ.

## 720

Тĕне кĕмен чăвашсем чăн чаплă кирeметсем пиллĕк теççĕ. Вĕсен ячĕсем: Аслă ырă, Аслинчен кĕçни, Пĕлхерĕн, Пăванчă тата Йĕмпĕрчĕ. Икĕ аслине укçа пăрахаççĕ. Пĕлхерĕне хур пусса чӳклеççĕ. Икĕ кĕçнине татах укçа пăрахаççĕ. Çавăнта пăрахнă укçасене нихăçан та илмеççĕ. Çав укçана илсессĕн Киремечĕ тытать теççĕ.

## 721

Киремете пуççапакан çын халь те Явăш вулăсĕнче харпăр ялĕнчех пур. Киремет тăвайккисене час-часах çырма хĕрринчи тăвайккисен тăррисенче курма пулать. Киремет вăрттăн, пĕччен-пĕччен кĕлтусан анчах çырлахать тет. Чӳк тунă чухнехи пек пухăнса кĕлтунине Киремет юратмасть тет. Киремет хăй те вăрттăн çĕрте, çырма-çатрара, йывăç хăвăлĕсенче анчах пурăнать тет. Киремет укçасăр çырлахмасть тет; укçапа пĕрле салат-хăмла пăрахас пулать тет. Халь çине укçа вырне чăвашсем çут тенкĕ анчах пăрахма пуçларĕç. Халь çине Киремечĕ те ĕлĕкхи пек хытах тытимасть тет.

## 722

Пирĕн таврара ĕлĕк ак çапла кирeметсем пурччĕ:

1. Мăн киремет пирĕн ялтан хĕвел анăç еннелле 4—5 çухрăмра, Чурачăк хирĕнче (уйĕнче) пĕр пысăк тĕмескере (куркан пекскер) пурăнать.

Ун таврашĕнче те йывăç-мĕн çук, тап-таса уй. Киреметсене чӳк тума тапратсан чи малтан çав Мăн киремете чӳклетчĕç, унтан вара Кипĕте, Çĕн ыра, Сив çăла, ыттисене те чӳклетчĕç. Мăн киремете пăхакан ăрасна кĕлтӳçĕ пурччĕ, вăл чурачăксемччĕ. Çемьере пĕри-пĕри чирлесен е урăх усал пулсан юмăç хушнипе Мăн киремете асăнса кив кĕлет умне шур тутăрпа укçа çыхса хуратчĕç, виç çулта пĕрре çав асăнса хунă укçасене Мăн киремет кĕлтӳçне кайса паратчĕç. Вăл пухăннă укçапа виçĕ çулта пĕрре вăкăр (мăкăр) илсе Мăн киремете чӳклетчĕç. Ĕлĕк ытти киреметсен те кĕлтӳçсем пулнă тесе калаçатчĕç пирĕн атте-аннесем, хам эпĕ Мăн киремет кĕлтӳçне анчах астăватăп.

2. Кипĕт киремет пирĕн ял çумĕнчехчĕ. Унта пĕр тарăн вар пур, вар тĕпĕнче çăл тухать, ăна Кипĕт варĕ теççĕ. Кипĕт çавăнта пурăнать тетчĕç. Ăна пит усал-хаяр Киремет тесе шутлатчĕç. Юмăçсем хушнипе е тĕлĕк курнă тăрăх, ăна така пусса чӳклетчĕç, укçа та парахатчĕç. Çуркунне юр кайсан эпир Кипĕт варĕнче укçа темĕн чухлĕ те кураттăмăр, анчах вăл укçана илме хăраттăмăр: ăна илсен Киремет тытать тетчĕç. Çуркунне вырăссем унта Киремет укçине пуçтарма юри пыратчĕç.

3. Çĕн ыр киремет пиртен кăнтăрлапа хĕвел тухăç еннелле, икĕ çухрăмри вăрман хĕрринчеччĕ. Унта пĕр çăл пурччĕ. Ку Киремет çинчен хаяр тесе калаçнине эпĕ илтмен. Çапах унтан çынсем хăратчĕç, ăна хисеплесе чӳк туса пуççапатчĕç.

4. Сив çăл киремет пирĕн кăнтăр еннелле, Каткасси çырминчеччĕ. Унта сăрт айккинчен пĕр вăйлă çăл кĕрлесе юхса тухать, шывĕ сивĕ. Çăл йĕритавра вăрман — çирĕклĕх. Вăхăчĕпе Сив çăл киреметне те асăнса выльăх е хур-кăвакал пусса чӳклетчĕç.

5. Ăнсуй киремечĕ ялтан мал еннелле, ял çумĕнчехчĕ, пĕр тарăн хĕрлĕ шырланлă вар хĕрĕнчеччĕ.

6. Хашкалăх — ялтан кай еннелле, Хурăн шыв варĕ тепĕр енчеччĕ, çӳллĕ сăрт çинче.

7. Еремкасси патĕнчи, Хĕрлĕ тăвайкки айĕнчи киреметсем пит чаплах марччĕ, вĕсене сахал чӳклетчĕç.

## 723

Пирĕн ялта чăвашсем пуççапакан киреметсем акă çаксем: Анатри е Ура айĕнчи кĕле, Хыр кутĕнчи аслă кĕле, Утă уй кĕли, Кушлауш кĕли, Карталлă кĕлĕ, Алпай кĕли, Уçин кĕли, Çӳкӳл кĕли, Ĕне Çавал кĕли, Ĕнел кĕли, Юпал кĕли, Юнтапа кĕли, Качак кĕли, Кукавули кĕли. Çавă киреметсене укçасем, кĕмĕлсем, пăхăрсем е тата пасартан шуç укçа илсе параççĕ, тата пăрусем, такасем, хурсем, кăвакалсем те, япала та параççĕ. Вĕсем çынсене чирлеттереççĕ, асăнсан — иртеççĕ.

## 724

Киремет вăл — усал сывлăш вырнаçнă вырăн. Пирĕн ялта та Киремет пур. Киремет вăл — улпут пек, уйрăм çĕрте вырăнпа пурăнакан усал. Киремет йывăççисем çаксем шутланаççĕ: юман, çăка, хурама. Çак Киремет валли çынсем парнесем хатĕрленĕ. Çын усал тунине вăл манмасть тет. Çав çынна вара вăл хăй те усал тунă тет. Пирĕн ялти Киремет йывăççи патне чӳксем тума каяççĕ. Ал шăллисем, тутăрсем çакаççĕ. Малтантарах унта

вылькăх пусса чӳк тунă. Хальхи вăхăтра ку йăла манăçа пуçларĕ ĕнтĕ. Халь хамăр ялтан эпĕ тата тепĕр виç-тăват карчăк çумăр ыйтма кайкалатпăр.

Чăнласах, икĕ çул каялла эпĕ кукамай тата темиçе карчăк çумăр ыйтма кайнине курса. Вĕсем чăкăт, сăра, кукăль, çăмарта тата ытти япаласене илсе уя тухса чӳк турĕç. Унта вĕсем çуртасем çутнă, Турăран, Киреметрен çумăр яма ыйтнă. Эпĕ астăвасса, вăл çул чăнласах та шăрăх, типĕ çу пулнăччĕ. Кайран, чӳк туса килнĕ хыççăн, чăнласах та тепĕр темиçе кун хыççăн çумăр вăйлă çурĕ.

## 725

Вăт мĕн вăл Киремет: улпут пек, уйрăм çĕрте вырăнпа пурăнакан усал. Ак мĕнтен пулнă вăл.

Ĕлĕк, Хусана туртса илнĕ чух, Хусан патĕнче пит вăйлă вăрçă пулнă. Ун чух пĕр Хусан çынни Хучаш çĕрне тарса килнĕ, пĕр çырмана пытаннă. Унăн хырăмĕ выçнă. Вăл яла кайнă та: «Эп усал Киремет!» — тесе çынсенчен çимелли ыйтнă. Памасан: «Эп сире вĕлеретĕп!» — тесе хăратнă. Вара çынсем ăна çимелли, ĕçмелли леçсе панă. Вăл вара унтах вилнĕ. Вилсен ăна никам та пытарман, йытăсем çисе янă. Çакăнтан Киремет пулнă.

Чăнах та, ялта пĕр çын хăлхасăр, юмăçа каять те, юмăçĕ ăна калать:

— Сана Хусан киремечĕ тытнă, — тет.

— Манăн мĕн тăвас? — тет лешĕ.

Юмăçи вара ăна:

— Эсĕ пасара кайса шуç укça (нухрат) ил те, çăнăх хур та кĕрпе хур, салат хур тата тиркĕ-çăпала хур, тата çынна мĕн-мĕн япала кирлĕ, çавна хур та пĕр тутăр ăшне çыхса çав вилнĕ вырăна кайса пăрах. Эсĕ ак çапла кала: «Киремет, Киремет! Эсĕ мана ан тив ĕнтĕ. Эпĕ сана халь ĕçтерĕп, çитерĕп, мана халсăртан чĕрт!» — тесе кала, вара иртĕ, — тесе каланă.

Çынĕ çапла туса чĕрĕлнĕ вара. Вăл çырмана халĕ те Хусан киремет çырми теççĕ. Унта халĕ те çынсем çавăн пек киремет тăваççĕ.

## 726

Кирек мĕнле çын та чăвашсем суя турăсене пуççапнине пĕлет. Çавăнпа пирĕн ялсенче те суя турăсем пур. Çав суя турăсене киреметсем теççĕ. Пирĕн ялсен киреметсем ак мĕн ятлă: Ăшне, вăл пирĕн анкарти хыçĕнче, вар хĕрринче; Мăн киремет; Мăтьăк шăмми; Торханти, вăл пирĕн анатри хапхаран тухсан Моргаш ятлă юхакан шыв урлă тăвайккинче, вăрман патĕнче; Кипечи киремечĕ; Ик ял торри; Моргашçом ăшни; Сар тăван.

Эпĕ хам киреметсене парне кӳрнине корман, çавăнпа эп пур киреметсене те парне мĕнле кӳрнине пĕлместĕп. Ăшне киреметне така пусса кӳретчĕç тет. Юмăç карчăкĕ мĕн тĕслĕ така кӳрме калать, çавăн тĕслĕ кӳреççĕ тет. Парне кӳрекен малтан ик така илсе пырса пăхаççĕ тет. Вара иккĕшин çине те шыв яраççĕ тет. Чĕтрекене парне кӳреççĕ тет. Малтан ашне пĕçереççĕ те çиеççĕ тет. Шăммине парне кӳрекен вырăн çине хурса çунтарса яраççĕ тет.

Пирĕн ялăн анат вĕçĕнчен тухсан пĕр пĕчĕк кĕпер пур. Унтан каççан, сылтăм еннелле кайсан пысăкрах кĕпер пур. Ун урлă каççан тăвайкки пур. Вăл тăвайккинче пĕчĕк вăрман пур. Çав вăрман патĕнче Торханти ятлă

киремет. Унта ҫынсем е ҫурта, е ҫӑмарта, е укҫа кайса пӑрахаҫҫӗ. Ёлӗкрех тата чӑхӑсем кайса янӑ.

Эпӗ вӑл Киремет ҫинчен икӗ халап илтнӗ. Эпир ҫуркунне малтанхи курӑк шӑтсассӑн ялан сурӑхсем ҫитерме каяттӑмӑр. Эпӗ ун чухне тӑхӑр ҫултаччӗ. Сурӑхсем ҫитерме кайсассӑн сурӑхсемпе вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳреттӗмӗр. Ҫав тӑвайккине ҫитсен ялан укҫа шыраттӑмӑр.

Пӗрре сурӑхсем ҫитерме кайсассӑн ҫав тӑвайккинче ҫирӗм пӗр пус пуҫтартӑмӑр та ачасем патне кӑтартма кайрӑмӑр. Ачасем патне ҫитсен ачасене ҫирӗм пӗр пус (ултӑ пус) тупрӑмӑр тесе кӑтартрӑмӑр. Ҫавӑнта пӗр карчӑк пурччӗ. Карчӑк: «Укҫӑра ӑҫтан тупрӑр?» — терӗ. Эпир: «Ав ҫав тӑвайккинче», — терӗмӗр. Карчӑк пире: «Вӑл укҫана ӑҫтан илтӗр, ҫавӑнта кайса хурӑр, унта улпут пурӑнать, вӑл улпут укҫи, улпут сире вӑл укҫана кайса хумасан вӗлерӗ, час кайса хурӑр», — терӗ. Эпир кайса хурасшӑн пулмарӑмӑр. Вара карчӑк пире туяпа хӑваласа яра пуҫларӗ. Ачасем нихӑшӗ те каясшӑн пулмарӗҫ. Вара мана укҫине пӗр ҫӗре пуҫтарса пачӗҫ. Укҫана илтӗм те тӑвайккинелле кайрӑм. Тӑвайккине хӑпарса ҫитсен аялалла пӑхрӑм та, тӑвайкки айӗнче хресне атин хӗрӗ ларать. Вара тӑвайккинчен антӑм та ҫавӑнта кайрӑм. Манӑн хресне атин хӗрӗ Окҫин ятлӑ. Вӑлсам ларнӑ ҫӗре ҫитсен укҫана ӑна патӑм. Каҫпа киле таврӑннӑ чухне карчӑк манран: «Укҫана вырӑна кайса хутӑн-и?» — тесе ыйтрӗ. Эп: «Кайса хутӑм», — терӗм. Вӑл: «Кайса хумарӑн пулсан ҫулталӑкран вилетӗн», — терӗ. Вара эп киле кӗрсе юлтӑм. Тепӗре ак мӗн илтрӗм: ҫав тӑвайккинчен пӗр ҫын укҫа илсе таврӑннӑ тет. Ҫак ҫын пӗр уйӑхран урасӑр пулса ларчӗ тет. Нимӗнле те ури юсанмасть тет. Тухтӑрсем патне те кайса пӑхнӑ тет. Тухтӑрсем патне кайсан ури пушшех пӑсӑлса кайрӗ тет. Аппалансан-аппалансан юмӑҫа кайнӑ тет. Юмӑҫ карчӑк ларсан-ларсан: «Эс ҫав тӑвайккинчен укҫа илнӗ, — терӗ тет. — Ун ҫумне виҫӗ пус (пӗр пус) хушса пӑрахсан ури тӳрленет», — терӗ тет. Хай ҫын таврӑнсан тепӗр кунне каҫчен кайса пӑрахрӗ тет. Унта е укҫа, е ҫӑмарта пӑрахма каҫпа каяҫҫӗ. Унта кайнӑ чухне ҫынна хирӗҫ пулсан, ҫын чӗнсен Торханти ҫырлахмасть теҫҫӗ. Эп темӗн чухлӗ укҫа илнӗ те, анчах мана нимӗн те пулман. Ҫавӑнпа эп ӗненместӗп.

### 727

Пирӗн ялта пӗр юмӑҫ Элкей пичче пулнӑ, унӑн хыҫӗнчех, Чӳк катинче, пысӑк ҫака Киремет. Пӗрре ун патне Киремет пычӗ тет те пӑтӑ пӗҫерсе пама ыйтрӗ тет. Вӑл каҫ пулнӑ тесе пӗҫерсе памарӗ тет, вара Киремет ҫилленсе Элкей пичин арӑмне тытса хутлатрӗ тет, вара икӗ кун асапласан хайхи Элкей Киремете кӑвакал пусса какайне пӗҫерсе парать. Киремет ҫисе ячӗ тет те тепӗр кунне хур ыйтать тет. Элкейӗн хур пулман, хур илме Мучар пасарне каймалла, арӑмӗ Шелюк асапланса выртать — сӑмси шыҫнӑ. Киремет ҫырлахмасть хурсӑр пуҫне. Элкей пасара каяс мар, Киремет Шелюка вӗлереп тет. Хайхи Элкей пасара кайса хур илсе килчӗ тет те пусса Киремете пӗҫерсе ҫитерчӗ тет. Унтан арӑмӗ Шелюк тӳрленчӗ тет, анчах сӑмси путӑк пулса юлчӗ тет. Киремет чылай вӑхӑт иртсен каллех пычӗ тет те Элкейрен така ыйтать тет. Элкей така пусса пӗҫерсе панӑ, унтан кайран вӑкӑр ыйтать тет, Элкей вӑкӑр та пусса парать. Унтан вара лаша ыйтрӗ тет. Элкей пичче лаша та пусса пачӗ тет. Ӑна ҫисен вара Киремет Элкее каласа карӗ тет: «Кунтан малашне ҫапла ту. Кам та пулсан чирлесен малтан пӑтӑ пӗҫер, унпа тӳрленмесен — кӑвакал, кӑвакалпа

тӳрленмесен вара хур пус», — тесе каларĕ тет. Вара Элкей пичче ытти çынсене те вĕренте пуçларĕ тет. Хайхи Элкей пичче патне аякри ялсенчен çӳре пуçларĕç тет чăвашсем юмăç пăхтарма. Элкей вĕсене мĕн-мĕн пусмаллине каласа парать. Элкей пичче вилсен унăн йĕркине унăн ывăлĕ Элентей вĕренсе юлнă юмăç пăхма.

## 728

Турăшăн чăвашсем питĕ кăмăллă та йăваш пулнă тет. Çавăнпа та Турă чăваш çыннисене хисеплесе пуян пурнăç туса панă тет. Никам та хуйхăсуйхăна, инкек-нушана пĕлмен тет. Чăвашсем тата лайăх пурăнччăр тесе Турă вĕсене сыхласа усрама хăйĕн Киремет ывăлне янă тет.

Киремет чăваш çĕр-шывне пăхса, асăрхаса тăнă, инкек-синкекрен сыхланă, телейпе ырлăх, хаваслăх парса тăнă тет. Çынсем Киремете хисепленĕ, яланах пуç тайнă тет. Шуйттан çакна курать те хăйне хисеп илесшĕн чăваш çыннисене хăй майлă çавăрать тет. Шуйттан хĕтĕртнипе чăвашсем кĕтмен-туман çĕртен Турă ывăлне Киремете вĕлернĕ те паллă хăварасшăн мар Киремет кĕлеткине çунтарса кĕлне çилпе вĕçтерсе янă тет.

Турă çакна сиснĕ те чăваш кĕлĕ вĕçтернĕ чух: «Ман Киремет ывăл кĕлĕ ăçта ӳкет, çавăнта инкек-синкек, нуша кӳрекен Киремет пултăр!» — тет. Çавăнтан вара çырма, улăх, çыр, вар, вăрман, сăрт-ту, кӳлĕ, пĕве, урам, хапха ячĕпе чӳклемелли киреметсем пулса кайнă тет.

## 729

Чăвашсем çав тĕрлĕ нумай турăсенчен пуçне тата киреметсене пăхăнса, вĕсенчен питĕ хăраса, вĕсене йăлăнса пурăннă. Ку киреметсем питĕ усал çынсене питех те асап кăтартса тăнă. Кунта Çирĕклĕ киремет пур, вăл Киремет ак çапла тухса кайнă тет. Ĕлĕк пĕр пит усал таркăн пулнă тет, вăл пурăнасса та вăрмантах пурăннă тет. Ку Çирĕклĕ ĕлĕк вăрманлăх пулнă. Çав таркăн вилессе çак çирĕклĕхре вилнĕ тет, унăн укçи те пит нумай пулнă тет. Укçине çĕр айне варса хунă тет те, хăй те çавăнтах вилнĕ тет. Вара çав таркăн Киремет пулса кайнă тет. Ку Çирĕклĕ киремет хăй патĕнчен хытă шавласа иртсе кайсан тытать те пит хĕн-асап парать. Çавăнпа унтан чăвашсем çеç мар, тутарсем те пит хăраççĕ.

## 730

Хуран хăлăпĕнчи ырăсем çинчен ак çаплалла илтнĕччĕ эпир. Унта пурăннă тет ĕлĕк чăн чăвашсем. Вĕсем пур япалана та шурра юратнă. Пирĕн пек хĕрлĕ-кăвак таврашĕ вĕсем çывăха та яман. Кĕписем вĕсен, йĕмĕсем, ури сыррисем пĕтĕмпе шап-шурăччĕ тет. Вĕсем çатантан авса тунă пек пӳртсенче пурăнатчĕç тет. Вăл хӳшĕ ăшне те шурă пир сарнăччĕ тет. Вăл пӳрчĕсене вĕсем çĕрелле алтса кĕрсе тăватчĕç тет. Вăл çĕр ăшнелле алтса кĕрсе тунă çĕре вĕсем ана-ана кĕлтăватчĕç тет. Кĕлтунă чухне кармаллине карса яратчĕç тет те çавăн хыçĕнче ӳпне выртса кĕлтăватчĕç тет, сăхсăхмасчĕç тет. Малтан ваттисем кĕрсе кĕл тăватчĕç тет кашни ир, унтан вĕсем хыçĕнчен хĕрарăмсем ачисемпе ана-ана кĕлтăватчĕç тет. Вăл чăн чăвашсем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе качака усратчĕç тет. Çав качака сĕчĕпе тата тырă акса

тăранса пурăнатчĕç тет. Тыррине туратлă йывăçсемпе çĕре шыртара-шыртара акатчĕç тет. Унта вĕсем темиçе килĕччĕ тет. Пĕр ватă çынни астăваканни пеккиччĕ тет. Вара пурăнсан-пурăнсан ку хайхи чăвашсем таçтан килсе лараççĕ те кунта чăн чăвашсене кураççĕ. Вĕсем пуянччĕ тет питĕ. Ваттисем вĕсене пăшал персе хăратаççĕ тет те, вăл чăн чăвашсем таçталла пăрахапăраха каяççĕ тет. Укçисем кусен чукăн арчасемпе çавăнтах ларса юлаççĕ тет, илсе каяймасăр. Вĕсем вăл укçасене темĕн-темĕн кала-кала хăвараççĕ тет. Ку хальхи чăвашсем пыраççĕ те илсе килеççĕ вăл сулса хăварнă укçасене. Çавăнтан вара тытăнаççĕ ял çыннисем чирлеме. Акă хай укçасене каялла леçе-леçе пăрахаççĕ. Хăшĕ ахаль хăй укçине леçе-леçе пăрахаççĕ. Чĕрĕлеççĕ çапла. Çавăнтан вара Киремете укçа пăрахасси каять.

## 731

Калăм* карчăкĕсем пĕрре уйăха çиме шухăшланă. Пуçтарăнчĕç вĕсем пĕр калăм карчăкĕ патне. Суса пăхаççĕ — хĕрĕхĕн пур, пĕр çын çитмест. Кусем тапратрĕç хуйхăрма, тепĕр çын ăçтан тупас теççĕ. Çапла каласа ларнă вăхăтра хуçи карчăккин кĕрÿшĕ персе çитет. Кăна курсан карчăксем хĕпĕртесех кайрĕç. Хĕрĕх пĕррĕн хĕрĕх те пĕр шăпăр çине утланчĕç, çÿçпуççене салатса ячĕç те уйăха çиме тухса кайрĕç. Кайрĕç-кайрĕç те уйăх патне çитрĕç. Малтан карчăксем тапратрĕç кĕрÿшне вĕрентме: уйăха тытиччен эсĕ пĕрмаях: «Но, но, но!» — тесе тăр теççĕ. Уйăха хĕрĕхĕн хĕрĕх енчен çавăрса илчĕç, пĕри шала кĕчĕ. Шалти уйăха хăвалама тапратрĕ. Карчăксем çаплах: «Но, но, но!» — тесе тăраççĕ. Кĕрÿшĕ те çаплах: «Но, но, но!» — терĕ, уйăх ун тĕлне çитсенех ку: «Тăр-р!» — тесе ячĕ. Уйăх кăна илтсен тăпах тăчĕ. Калăм карчăкĕсем уйăх чарăнса тăнине курсан пурте хăраса каялла кайса ÿкрĕç. Тăкăнчĕç вĕсем ăçта кирлĕ унта: хăшĕ тухăрине**, хăшĕ карта тăрне, хăшĕ çырманалла. Кайран вара карчăк виллисенчен Киремет пулнă. Ватă карчăксенчен хаяр, çырлахман киреметсем пулнă, çамрăккисенчен йăвашраххисем пулнă.

## 732

Тĕне кĕмен чăвашсем Киремете ак мĕншĕн пуççапатпăр теççĕ. Турăпа пĕрле Шуйттан та, Киремет те пулнă, вĕсем пурăнассине те пĕрлех пурăннă теççĕ. Пурăнсан-пурăнсан Турă каланă тет Шуйттанпа Киремете. Шуйттанне: «Сана вилли пултăр, мана чĕрри пултăр», Киремете: «Сана ÿкентăран пултăр», — тесе каланă тет те Турă вĕсене иккĕшне хăй патĕнчен хăваласа кăларса янă тет. Пурăнсан-пурăнсан Турă хăйĕн çыннисене шутласа пăхнă тет те, унăн Шуйттанăннинчен сахалтарах пулнă тет. Вара виççĕшĕ пĕр çĕре пухăнса канаш тунă тет. Турă Шуйттана: «Манăн чĕрри те, вилли те пултăр, сана ÿкен-тăран пултăр», — тесе каланă тет те Киремете ахалех хăварнă тет. Киремет вара аптăранипе Турăран çĕр ыйтнă тет, Турă паман тет; Шуйттанран ыйтнă тет, Шуйттан та паман тет. Вара аптăранипе Киремет вырăспа тутартан ыйтнă тет, вĕсем те паман тет. Юлашкинчен ниçта кайса кĕреймесĕр чăвашсенчен ыйтнă тет, вĕсем начар çĕрсене хăякăна***, çырма таврашне парас тесе каланă тет. Çавăнпа Киремечĕ те

* Вупăр карчăкĕ.
** Сăрт хĕрри.
*** Çырма хĕрри, юхан шыв хĕрри.

вырăспа тутара йышăнмасть, пире çеç, чăвашсене, йышăнать; çавăнпа та Киремете хăякăнра асăнса чӳк тăватпăр теççĕ. Çитменнине, Киремечĕ те ăçта çĕр панă, çавăнта çеç пурăнать, ахаль çĕрте пурăнмасть теççĕ.

733

Пирĕн енче пĕр ялта Хăтăм чӳкĕ тăваççĕ. Вăл Хăтăм чӳкĕ акă мĕнтен тухса кайнă тет вĕсен. Сăрă шывĕ Атăла юхса тухнă çĕрелле ĕлĕк пĕр ялта Хăтăм ятлă питĕ хаяр çын пурăннă тет, унăн тăват ывăлччĕ тет. Пĕрре, ревис чухне халăха ятрав çĕр виçсе парса çӳренĕ чухне, çак Хăтăм çынсем сисеччен хăй валли тăват кĕтеслĕ çĕр пуссипех виçсе уйăрса илчĕ тет те тăват кĕтессине тăват юпа лартрĕ тет. Çав юпасем айне шăтăксем алтса тăват ывăлне тăват кĕтесе шăтăка лартса çиелтен хăма витсе хăварчĕ тет. Хăми çине çынсем пĕлмелле ан пултăр тесе кĕлтĕр тăпра сапрĕ тет. Унччен çынсем çакăн ытлашши çĕрне илме пырсассăн ку калать тет: «Хăть Çĕр йышĕнчен ыйтăр, Çĕр йышĕ хăш таран кăтартать — манăн çĕр çав таран пулĕ», — тесе çынсене çĕр тавра ертсе пырать тет. Юпасем патне çитсессĕн: «Çĕр йышĕ, ку таран камăн çĕрĕ?» — тесе кăшкăрать тет. Шăтăкри ывăлĕсем: «Хăтăмăн!» — тесе кăшкăрса лараççĕ тет. Çынсем вара кăна çĕр йышĕ хăй пиллесе çĕр виçсе панă-мĕн тесе ахалех пăрахса кайрĕç тет. Çынсем саланса пĕтсессĕн Хăтăм ывăлĕсене кăларма пырать тет те пĕрне те тупаймарĕ тет.

Çавăнтан вара кайран çав çĕр пĕтĕмпех Хăтăмăн пулса юлчĕ тет. Хăтăм хăй те ватăлнăçемĕн усаллана пуçларĕ тет, хăй çилленнĕ çынсене пурне те хĕнесе, çапса-ватса çӳретчĕ тет, ялĕнче хăй хĕнемен çын та юлманччĕ тет. Çынсене: «Эпĕ Çĕр йышĕпе пĕртăван, хам вилсессĕн сире пурне те хам алăра тыткалăп», — тесе йăлт хăратса пĕтернĕччĕ тет. Вилсессĕн ăна Çĕр йышĕпе пĕрле асăнса чӳк тăва пуçларĕç тет. Халь те хăтăмлă ялсенче çын вилсе çĕре кĕрсессĕн Çĕр йышĕпе Хăтăма чӳк тăваççĕ. «Хăтăм иртте-рес», — теççĕ.

734

Пуринчен ытла чăвашсем Киремете пуççапаççĕ. Ăна вĕсем хурăнсенче, ăвăссенче, çеремсем çинче е хурамасенче, юмансенче пурнать теççĕ.

735

Ларатăп хуралçă пӳрчĕ патĕнче мамакпа. Эпĕ тĕлĕрсе кайма тытăннăччĕ ĕнтĕ. Мана мамак вăратрĕ те, пăхатăп Путмар улăхĕ еннелле, ман куçа темĕнле пы-ысăк хĕр пичĕ курăнса кайрĕ. Хăйĕн кĕлетки паллă мар, тĕтĕм ăшĕнче пек курăнать. Хăй хĕп-хĕрлĕ. Пĕлĕтелле хăпарса пычĕ те куçран çухалчĕ. Мамак каланă тăрăх, унта тахçан авал Киремет йывăççи пулнă тет. Çавăн пек япала ĕлĕкрех те тухкаланă тет.

736

Ĕлĕк кашни ялăн пĕр йывăç пулнă. Çав йывăç пĕччен пĕр айлăмра е сăртра ларнă. Ялти карчăксемпе ватăсем çак Киремет патне пуççапма, чӳклеме пынă. Нумайăшĕ çак Киремет патне пырса пулăшу ыйтнă, парнесем панă. Хăш-пĕр усал çынсем çак йывăç патне укçасем тата ытти япаласем тухатса пăрахнă хăйсен курайман çыннисене çĕнтерме.

## 737

Туппай Ёсмĕл ялĕ çумĕнче пĕр армак-чармак юман ларать. Ку юман питĕ нумай çул ларнине таçтан аякран курма пулать. Вăл тахçанах хăрнă. Унăн турачĕсем армак-чармаккăн курăнса темле асамлăх тĕнчине аса илтереççĕ. Çакă асамлăха нимĕнпе те хускатма çук çын чунĕ те туйса илме пултарать çавă юмана курсассăн.

Унăн çумĕнче унта та кунта çакăнса тăракан тимĕр сăнчăрсем ку ахаль юман пулманнине пĕлтереççĕ. Çакă юман Киремет йывăççи пулнă тет ĕлĕк.

Тахçан ĕлĕкрех Туппай Ёсмĕлĕнче ял халăхне ĕçре ертсе пыракан, тĕрлĕ тăшмансенчен сыхлакан, нимĕнрен хăраман çын пурăннă тет. Вăл ял халăхне мĕнлерех пурăнмаллине, çут çанталăк йĕркийĕсене вĕрентнĕ тет. Ăна ялти çынсем хисепленĕ тет. Ку çынна Туппай тесе чĕннĕ пулнă. Анчах та çак çынна Шĕнерпуç енчи пĕр ялти çынсем питĕ курайман, ăна вара пĕр кавар туса килсе вĕлерме шутланă тет. Хайхи çак юман хăйĕн хăвăлĕнчен пуçланă тет тĕтĕм кăларса яма. Ку тĕтĕм пĕтĕм таврана хупласа илнĕ. Шуçăм тухас умĕн çак ушкăн яла çывхарма пуçласан тавра пĕтĕм тĕтрелле тĕтĕмпе тулса ларнă тет. Çак çынсем хăйсен çулĕнчен çĕтсе каяççĕ тет. Ниепле те çул тупса вăл яла çитеймен тет. Çапла вара çынсем Туппая вĕлереймен тет. Ял халапĕ: Туппая Киремет юманĕ вăхăтра сиссе пулăшнă теççĕ. Вăл ырă çынна усал çынсен каварĕнчен хăтарнă теççĕ.

## 738

Çав каталăхра пĕр пысăк ватă юман ларать; вăл юман кутĕнче пирĕн ялсем кашни çулах уй чӳк тăваççĕ, çавăнпа вăл юмана уй чӳк юманĕ теççĕ... Çав юмана пирĕн ялсем теме хисепленĕ пекех хисеплеççĕ: ăна иртсе каймассерен, пуринчен ытла ваттисем, çав юман çине пăхса акă çапла каласа иртсе каяççĕ: эсĕ пур пусри йывăççенĕн патши, сана кашни çулах асăнса витĕнетпĕр, пире те çырлахсам тесе. Тата вĕсенĕн ачи-пăчисем чирлесен вĕсем часах ăвăсран çурта тăваççĕ те çав юман кутне кайса кĕлтăваççĕ тет.

## 739

Артиль пĕви (хальхи Мастерской пĕви) патĕнче Киремет йывăççи пулнă. Çав йăмра аякран питĕ хăрушшăн курăнса ларатчĕ. Çур çĕр тĕлĕнче йăмра тăрринче çутă йалт-йалт çунса тăратчĕ. Эпир, ĕçрен кая юлса килекенсем, çав çутта курса таçтан, çырма тăрăх киле каяттăмăрччĕ. Йăмра вулли çумне тавраллах ĕлĕкхи укçасем сапса тултарнă тесе калатчĕç. Эпир çывăха пыма шикленеттĕмĕр. Пĕр ача çав укçасене илме хăтланса пăхнă та питĕ вăйлă чирлесе ӳкнĕ. Аран вилĕмрен çăлса хăварнă.

## 740

Ĕлĕк пирĕн ял хапхинчен тухсанах Киремет пур тетчĕç. Çавăнта пĕр пус, икĕ пус, пилĕк пус укçасем выртнине кураттӑмăр. Пире аттесем, аннесем илтерместчĕç, как унăн укçине илетĕр — вилетĕр тетчĕç. Вара иртсе çӳренĕ чухне те укçа выртнине курсассăн илместĕмĕр. Ĕлĕк çав Киремете пама ваттисем хур пустарнă тет. Сăра ĕçме кайсассăн таврăннă чух, çавăнтан иртсе кайнă чух ăна тавсье тунă тет тата çав тĕлте вăрçсассăн, кайран хăйне асăнмасассăн вĕлернĕ тет çав Киремет.

## 741

Пирĕн ялтан инçех те мар хăрса кайнă хурама йывăççи пур. Ваттисем ăна Киремет йывăççи теççĕ. Ĕлĕкрех, эпир ачасем пулнă чух, çав хурама патне урăх таврари çынсем те килетчĕç. Унта час-часах пит шăллисем çакăнса тăнине, йывăçне пир таткисемпе çыхнине, ун патĕнчи укçасемпе тĕрлĕ пуканесем выртнине курма пулатчĕ. Пирĕн асанне те час-часах çав хурама патне кайкаласа килетчĕ. Вăл ăна çӳлти Турă вырăннех хуратчĕ. Пире унран хăрама, хăй мĕн каланине итлеме хушатчĕ. Пĕчĕкрех чух пурпĕрех хăранă ĕнтĕ эпир, асанне каланисене те пурнăçласа пыркаланă.

Халĕ вăл йывăçа Айдак Аркадий Павлович кастарнă ĕнтĕ. Çынсем касас умĕн: «Мĕн пуласси кастараканне пултăр», — тесе каснă. Каснă хыççăн нумаях та вăхăт иртмен, Аркадий Павлович чирлесе ӳкнĕ. Халĕ те час-часах чирлекелет. Ваттисем ăна çав хуламана каснă хыççăн чирлет теççĕ.

## 742

Силтĕк вăрманĕнче хурама йывăçĕ пур. Çав йывăç Киремет йывăçĕ пулнă тет. Халĕ вăл çул çĕтерсе ярать тет. Эпир пĕррехинче çав йывăç патĕнченех вăрман ăшнелле пăрăнса кĕтĕмĕр. Кăшт утрăмăр кăна, темĕн чухлĕ тункра курăкĕ ларать. Эх, татма пуçларăмăр. Чечек çыххисем турăмăр та каялла çул çине тухма шутларăмăр. Утатпăр, утатпăр, пĕр вăрмантах çаврăнатпăр. Аран-аран çул çине тухрăмăр.

## 743

Киремет çырми тесен кĕçĕн таяпасене хĕвел тухăç енчи Чулçырма, ун таврашĕнчи çирĕклĕх тата пĕччен хурама — Киремет хурами аса килет. Киремет тесенех çынсен сехрисем хăпнă. Тем парсан та çăлăнăç кӳмен, хăрма пуçланă Киремет хурами вĕсене питĕ тарăхтарнă. Çулленех ăна лаша, ĕне, сурăх пусса чӳкленĕ. Киремечĕ вара вĕсемпе те кăнăçман, çав-çавах выртма-çитерме кайсан камăн та пулсан лаши е ĕни лачакана е çырма тĕпне путса вилнĕ, сурăхсем ĕлĕкĕ ăшне кĕрсе çухалнă. Çавна вара: «Киремет илчĕ», — тенĕ. Киремет чӳкпе çырлахман пулать. Чир-чĕрпе асапланакансене те юмăç карчăксем Киремет патне янă. Киремете парне кӳрсе хушпу-сурпан, пит шăллисем кайса çакнă, укçа пăрахнă.

Киремет — чăвашсен авалхи турри. Уяв кунĕ — эрне кун. Çав кун вĕсем Киремете пуççапма çӳренĕ.

— Мĕншĕн-ха вара Чулçырмара пулнă унăн вырăнĕ?

— Чулçырма — ялăн хĕвел тухăç енче. Кулленех çав енчен Пӳлĕхçĕ хĕвел тухса сарăлать тĕнчене. Кунсăр пуçне тата çырма çулленех ишĕлсе, аслăланса пынă май çĕр айĕнче выртса кăмрăкланнă юман вуллисем хушшинчен темле пысăк чĕр чунсен шăлĕсене тупнă. Çакăнта вара ĕлĕк улăпла чĕр чун çӳренĕ-çӳренĕ те лачакара путса вилнĕ пулать, Киремет çавăнтан пулнă пулать.

Çав шăлсем пысăкăшне кура çак чĕр чун темиçе çĕр çул каялла вилсе пĕтнĕ. Тиносавăр е мамонт йышшисенчен.

Чулçырма шурлăхран пулса кайнă. Çав шурлăха кĕрлĕ-çурлă е çулла та выльăхсем кĕре-кĕре кайса путнă.

Халĕ çав Киремет юписенче Чкалов ячĕпе хисепленекен колхоз 12 га сад, 10 га хăмла лартса чĕртрĕ. Сачĕ иксĕлми улма-çырлапа савăнтарать.

## 744

Пирĕн ял вырăнĕнче ĕлĕк вăрман пулнă. Кайран, вăрмана кăкласан, ял пуçланса кайнă. Анчах ялтан инçех мар çырмара пĕртен-пĕр йывăç ларса юлнă. Ваттисем ку йывăçа светтуй сывлăш сыхласа хăварнă тенĕ. Ăна кассан çылăх пулать тенĕ. Кайран ăна Киремет йывăççи тенĕ. Кашни праçникре ăна парне панă, тĕрлĕрен апат-çимĕç, пир тăрăхĕсем, кĕпе-тумтир е выльăх-чĕрлĕх вĕлерсе кайса панă. Киремет йывăççи ларакан çырма урлă каçнă чух, уйрăмах каçхине, çынна çуран пулсан та, лашапа пулсан та усалсем аташтарса айккинелле илсе кайнă. Е тата çав çырма тĕлĕнче шăп çур çĕр вăхăтĕнче пулсан çуран çын е лаша пĕр вăхăт хушши хытса тăнă. Е тата куçа темĕнле хăрушă е шурă тăхăннине, е хура тĕслĕ çын евĕрлĕ, чĕр чун евĕрлĕ япаласем курăннă. Киремет йывăççи халĕ çук, çырмине Кашлă çырми е Киремет çырми теççĕ. Çырминче халĕ те хушăран аташтаракан усалсем, куçа курăнакан япаласем пур теççĕ.

## 745

Кашни çĕр çинчех Киремет пулнă тет. Çăлпуç патĕнче чи аслă Киремет пулнă.

Пĕрре çав Киремет патĕнчен станувуй пынă тет. Вăл: «Эп Кираметрен хăрамастăп», — тесе каланă тет. Кайсан-кайсан çаврăнса пăхнă тет Киремет тухмасть-ши тесе. Вара унăн мăйĕ каялла çаврăнса ларнă тет.

Яла çитсен пĕр ват çын патне кĕрет тет станувуй. Çав ват çын станувуя чи юратнă лашине пусса Киремете парне пама хушнă тет. Вара станувуй лашине Киремете парне панă тет. Çавăн хыççăн тин станувуй мăйĕ тӳрленсе ларнă тет.

## 746

Хир енче, Раккассипе Элшел хушшинче, пĕр Киремет пур тет, çавна çитес хаяр Киремет çук тет вара. Ун тĕлĕнчен иртсе кайнă чух калаçма та юрамасть тет, кулма та юрамасть тет. Вăл Киремет вырăнĕ çултан инçе мар, çĕр хăлаç анчах, тĕме çинче, таврашĕнче йывăççем ӳснĕ, çавăн енне çаврăнса пăхма та юрамасть тет. Пĕлтĕр пирĕн ялсем Улатимĕр Ăçтапанĕ Михаил праçникĕнче Раккассине йыхрава кайнă. Унта вăл ĕçкеленĕ, каç пулсан тин тухнă, хăй ӳсĕр пулнă, çав Киремет тĕлне çитсен аташнă вара, аташса çаврăнкаласа çӳресе шат супнă вара. Унтан çав Киремет тĕми çине пырса кĕнĕ те унтах лашине тăварса çуни çумне кăкарса выртнă вара. Вăл çывăрсан пит усал тĕлĕк курнă вара: тухнă тет салтак çарри, пурте пăшалпа тет, унтан кăна та шурă кĕпе-йĕм тăхăнтарса, пăшал парса салтакла вылятнă тет.

Унтан ирхине, тул çутăлсан, киле тавăраннă вара, киле тавăрнсассăн мĕн пулнине пурне те каласа кăтартнă вара. Унтан вара хăй пĕр эрнеренех чирленĕ те тăватă уйăх асапланса вилчĕ вара. Нимскер туса та мая килмен. Хăй виличченех пĕтĕмпе çĕрсе кайнă.

## 747

Пирĕн ял вĕçĕнчех, аслă хапхаран тухса пĕр икĕ анапӳ кайсан, Киремет вырăнĕ пур. Вăл Киремете ĕлĕк-авал питĕ чаплăччĕ тесе калаçаççĕ ваттисем, питĕ хитре йывăççем нумайччĕ: чăрăш, хыр, хурăн тата ытти тĕрлĕ йывăççем те. Йĕри-тавра карта тытса çаврăннăччĕ теççĕ. Кам та пул-

сан чирлесен Киремет тытнă тесе Киремете тем те пĕр кайса хывнă. Унта питĕ нумай укçа кайса тăкатчĕç теççĕ. Вăл Киремет вырăнĕнчен халь те укçасем тупаççĕ. Пĕрре çапла пĕр ача Кириметрен укçа тупнă та вăл укçине киле илсе таврăннă. Пурăнсан-пурăнсан ку ачана таçтан чир килсе лекет. Вăл питĕ нумай выртрĕ чĕрĕлеймесĕр. Çавăнпа вара ăна ваттисем Киремет тытнă, Киремете хывмалла тетчĕç. Ăна Киремет тытман пулнă, вĕри чирпе чирлетчĕ вăл ача. Халь Кириметĕн вырăнĕ анчах тăрса юлнă. Ăна пирĕн ялти çамрăксем халь нимĕн вырăнне те хумаççĕ.

### 748

Пирĕн ялăн çурçĕр енче, пĕрер çухрăмра, пĕр пĕчĕкçĕ кăна катa пур. Унта юмансем çеç ÿсеççĕ. Юман кати те теççĕ-ха ăна. Те хăй пĕчĕкрен, те йывăççисем сайраран пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне витĕрех курма пулать. Хăй пĕчĕкçĕ пулин те, витĕр курнать пулин те унта мăн çынсемех аташа-аташа каяççĕ тет. Киле килме ниепле те çул тупма çук тет. Пĕрре пирĕн анне те кăмпана кайсан аташса кайнă-ха унта. Киле тухас тесе çул шырап-шырап тет, ну, ялан вара пĕр вырăна пырса тухап тет.

Çапла вăл, аташса кайсан ялан пĕр вырăна пырса тухать тет. Каçпа унта усалсем тухаç тет, арçурисем туй тăваç тет. Вăл катара ĕлĕк таврари ялсенчи çынсем тĕрлĕ чÿксем тунă тет. Киремет вырăнĕ тет вăл. Çампа пит хăрататать теççĕ унта.

### 749

Çак ялтах Киремете хисеплемен тепĕр çын пулнă, вăл Матви ятлă пулнă тет. Пĕрре вăл çак вĕт хăва ăшĕнче пĕр тирĕк çуллă мимĕр ларнине курнă, унта пĕр кашăк пулнă, вара çав кашăкпа мимĕрне çисе ишсе хучĕ тет, тирĕкĕ çине тăпра тултарса хучĕ тет те киле аран сывласа-мăшлатса таврăнчĕ тет; тепĕр куннех кунăн ÿчĕ çине курка пек виçĕ çăпан персе тухрĕ тет; хайхи Матви: «Эпĕ Киремете çапла мăшкăлланăччĕ, мана çавăнпа çăпан тухрĕ, анне, хăвăртрах çуллă мимĕр пĕçерсе Киремете кайса пуç-çап», — тесе каларĕ тет. Вара амăшĕ çапла тусан Матвин, чăнах та, çăпанĕсем тÿрленчĕç тет, вара Киремечĕ Матвие тĕлĕкре курăнса: «Матви! Эсĕ ÿлĕмрен ман пуç çине тăпра ан тултар, мана хисеплеменшĕн санăн ÿт çине мĕн тухрĕ», — тесе каларĕ тет. Çак Матви вара унтан кайран Киремете пуççапма пуçларĕ тет.

### 750

Ĕлĕк чÿк тунă. Вара таврари пысăк йăвăç çине кайса çакнă. Вара çав йăвăç панче япала тытсан, мĕн те полин тосан — тытать. Ку таврашра та пор он пек йăвăçсем.

Турикасра 4 хорн пор. Перн Мари школа кайнă чох ça хорăн торатне хоçнă та — коççăр полчĕ. Мĕн тос халĕ? Ытса пĕлтĕмĕр, вара кайса асăнса окçа пăрахса та — тÿрех коç йосанчĕ. Шăкитсен картинче те халĕ те тÿнса кайнă йăвăç выртат. Шăкит старик каснă та çона тоса, шотсăр номай коççăр порăнса. Карян тĕрлĕ йăмăçсем патне çÿрет терĕ.

Татьян карти хысĕнче халь те çăка ларать. Хăратакан тохат теччĕ çакăнтан. Йăмăçсене ĕненес килмес ман, пустой анчах поль вăл. Кам йăмăç — он кил-çорчĕ чохăн, те окçа тоссишĕн йăмăç ярнă вăл.

## 751

Ӗлӗк ҫынсем Киремете пуҫҫапнӑ. Киремет патне укҫа пӑрахнӑ. Халӗ нухрат пӑрахаҫҫӗ. Акӑ мӗншӗн: Киремет ашшӗ вилсен аслӑ ывӑлӗ уйрӑлса тухнӑ, вӑталӑххи — салтакра, кӗҫӗнни, тӗпре юлни, — ухмах. Ҫавӑнпа ӑна укҫа вырӑнне улталаса нухрат хураҫҫӗ. Ӗлӗк Киремет йывӑҫҫисенчен хӑраса пурӑннӑ тет. Ӑна чысламасӑр нихҫан та тӑман тет.

## 752

Пирӗн авалхи ентешсем нумай турра ӗненнӗ. Тӗрлӗ турра ӗненесси вӗсен вӑрахчен, нумай ҫулччен тӑсӑлнӑ. Вӗсем тӑватӑ тӗлте Киремете пуҫҫапнӑ: Киремет юманне (Ӳтерми ҫырминче пулнӑ вӑл), Плотина таппи патӗнчи Киремет пилешне, 3 Киремет хурӑнне, Итут ҫырминчи ҫӑлкуҫа. Кашни ҫуркуннех кашни килӗрен пӗрер пашалу пӗҫерсе Киремет юманӗ патне хунӑ. Ҫав юман патӗнче 40 пашалу пухӑнсан теме пула ял ҫунса кайнӑ. Ял пурӗ виҫӗ хутчен ҫуннӑ теҫҫӗ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Киремет юманӗсене вӑйлӑ тӑвӑл ӳкернӗ.

Ашшӗпе ачи лашипе акаран таврӑннӑ пулнӑ. Ҫула кӗскетес тесе вӗсем вӑрмана кӗнӗ. Ҫав ӳкнӗ юман ҫав тери сарлака пулнӑ. Юман тӑрӑх ҫырма леш енне каҫнӑ чух ашшӗпе лаши чиперех каҫнӑ. Анчах кӑшт кая юлнӑ ачи ҫырмана ӳксе ҫурӑм шӑммине хуҫса вилнӗ.

Киремет пилешӗ пирки те хӑрушӑ хыпар ҫӳрет. Ҫак пилеш патне хӗрсем ҫӳренӗ тет иккен. Вӗсем тӗрлӗрен парне — сулӑ, шӑрҫа — ҫакнӑ пилеш турачӗсем ҫине.

Анчах та вӑхӑт иртнӗ май ҫак сӑваплӑ йывӑҫа маннӑ.

Пӗр ҫемье хӑйсен пӗчӗк ачине сӑпка туса парас шутпа ҫак пилеше каснӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара вӗсен ачи тӳрленмелле мар йывӑр чирлесе ӳкет. Юмӑҫ патӗнчен килсен ҫак ҫемье каснӑ пилеш юлашкине турпасӗ таранччен вырӑнне килсе хурать. Вӗсен ачи ҫавӑн хыҫҫӑн чӗрӗлнӗ тет.

Нумай вӑхӑт хушши ҫумӑр ҫумасан ял халӑхӗ Итут ҫырмине кайнӑ. Ҫӑлкуҫне тасатса янӑ. Тасатнӑ хыҫҫӑн та ҫумӑр ҫумасан пӗчӗк ачана ҫӑла янӑ. Нумай ача путнӑ теҫҫӗ. Халӗ те ваттисем ҫав ҫӑл патӗнче ҫывӑрсан тытать теҫҫӗ. Уйрӑмах кӑнтӑр тӗлӗнче.

## 753

Киремет тараси. Ву тарасаран шыв ӗҫсен Киремет тытать тет те, ҫӑмарта памасӑр чир каймасть тет. Киремет хурами ву уйра тӑрать, ӗлӗк унта Киремет валли кӑвакалсем, хурсем, кӑрккасем параччӗҫ тет. Троко стелли Киремет; Троко (Трофим) ятлӑ ҫыннӑн сӗтел пур, уна ӗлӗк хур-кӑвакал параччӗҫ тет; вӑл та пит час тытать тет.

## 754

Кайри Тӗрлемес Киремечӗ Ҫӑкалӑха кайнӑ ҫӗрте, аслӑ ҫул хӗрринче, Йӗршер Паймит сӑртӗнче. Унта ӗлӗк тӗне кӗмен киревсӗр ҫынсене пытарнӑ тет. Ҫавсем тӗне кӗнӗ чӑвашсене халӗ ялан сиен тӑвасшӑн пулса ҫӳреҫҫӗ: чир-чӗр яраҫҫӗ ҫилпе е ҫапӑнаҫҫӗ.

## 755

Киремет вăл, ăнниипе, усал сывлăш вырнаçнă вырăн, сăмахран, çав вырăнта вилнĕ пĕр-пĕр паллă чăвашран пулнă усал сывлăш. Пирĕн патăрта акă ял çывăхĕнче çӳллĕ тĕмеске, çурутрав манерлĕ пушă вырăн, пур. Ун виç енĕпе те юхан шыв юхса выртать. Çав вырăнта, эп астăвасса, темиçе çул каялла пĕр ватă хурăн ларатчĕ. Хурăн таврашĕнчи вырăна чăвашсем, хăшĕсем тата хурăнне хăйне те Утлас киремечĕ теççĕ. Чăваш ваттисем каланă тăрăх, çав çурутрав пĕр Утлас ятлă паллă пуян аллинче тăнă. Ун килĕ-çурчĕ çӳллĕ вырăнта вырнаçнипе унтан пур еннелле те тавралăх аван курăннă, çав вăхăтра тата виç енчен те юхан шывпа хупланса тăнăран вăр-хурахсенчен сыхланма меллĕ пулнă. Çурт-йĕр айĕнчен çӳремелли çулсем те пулнă унăн, çавăнпа хăйне те, хăйĕн тупри-япалине те вăрăсемпе хурахсенчен сыхлама лайăх пулнă, пирĕн ял çыннисене вăл хăратса, пăлхантарса пурăннă.

Утлас хăй тахçанах вилнĕ ĕнтĕ, анчах ун чунĕ вилмен Утлас хăй пахчине лартнă хурăн айĕнче пурăнать. Ун чунĕ халĕ те чăвашсене хăратать. Пĕр чăваш та ăна пуççапмасăр пурăнаймасть, унсăрăн Утлас чунĕ ăна тытса тĕрлĕ чир-чĕрпе асаплантарма пултарать. Унтан тасалма хурăн айне пĕр манит укçа е икĕ пуслăххи, е виçĕ пуслăххи çĕр айне чавса пăрахсан тин çырлахтарать тет.

Утлас пурăннă кил-çурт вырăнĕ халĕ те палăрать.

## 756

Пĕрре çапла пĕр çын, ют ялсем, укçа пăрахма пынă тет те вунă пус укçа ячĕ тет тата шăтăкран, анчах кĕлетрен Киремет сасă пачĕ тет: «Кунпа килĕшместĕп, çырлахмастăп, тата вунă пус кирлĕ», — тесе уларĕ тет. Çынни сехĕрленсе хăраса ӳкрĕ тет, анчах хăйĕн урăх укçи пулман тет, çапла вара хăвăртрах килне кайса тата вунă пус илсе килсе ярать те, вара тин çырлахрĕ тет Киремет. Вăл аслă Киремет пулнă тет, е вара эрнере пĕрре урăх киреметсене пăхма та каятчĕ тет, хăй виç лашапа çӳретчĕ тет, кĕлете лашасемсĕр кĕнине курмалла марччĕ, кĕлет патне çитичченех питĕ хытă чуптарса çитес пек килетчĕ, анчах кĕлет патне çитсенех таçта кĕрсе каятчĕ теççĕ. Пирĕн прихутра Вырăскасси ятлă ялта вырăссем пур, çав Вырăскассинче пĕр Устаха ятлă вырăс Киремет укçине вăрлама кайнă юлан утпа çĕрле, лашине итем карти çумне кăкарса хăварать те хăй Киремет кĕлетне укçа вăрлама каять, анчах хăй кĕлетре чухне кунăн лаши хӳрине Киремет тĕпĕнченех касса татать. Устаха лаши патне пырсан лаши хӳри çуккине курать те питĕ хăраса каять, унтан вăрланă укçине пăрахать те, лаши çине утланать те каять килне, вара çул çинче аташать те çĕрле хирте çӳрет, тул çутăлсан тин килне таврăнать. Çапла хăватлă пулнă тет вăл Нĕркеç киремечĕ.

## 757

Вылă шывĕ хĕрринче, Кĕçĕн тата Мăн Тикеш çывăхĕнче, Хĕртĕп киремечĕ пур. Ун çинчен çапла калаççĕ.

Хĕртĕп вырăнĕнче хĕрĕх хĕр пурăннă тет. Пĕррехинче вĕсем хăйсем патне çамрăк качча илсе пынă, хăйсене качча илме хушнă. Каччă килĕшмен. Çавăншăн çилленсе хĕрсем каччăна çĕр çине хурса ăна тăпрапа витсе хунă. Çавăнтан тӳпем пулса юлнă. Ăна Хĕртĕп киремечĕ теççĕ.

## 758

Турханти турă вăл Турах, тăлăх Турă теççĕ ăна. Кирек епле пулсан та е сасартăк чирлесен, выльăх-чĕрлĕх чирлесен е ачи-пăчи чирлесен тӳрех юмăça каяççĕ те, вăл вара каласа ярать: «Санăн Турханти кăларса пăрахмалла е Киремет тумалла», — тет. Тата леш çынни ыйтать: «Мĕнле томалла полĕ манăн ăна?» — тет. Лешĕ, юмăçĕ, калать: «Санăн çăмарта кăларса пăрахмалла тет: е укçа сан пата пырса пăрахнă çичĕ пус, халĕ санăн вун тăватă пус кăларса пăрахас пулать, е салат, çăнăх, кĕрпе, хăмла пăрахас пулать», — тет. Вара мĕн каланине тăвать çынĕ, унтан та усси пулмасан тата юмăça каять, юмăç татах тупса калать, çавăнти Киремете тумалла, çавăнта санăн утсам çĕмел çĕмĕрнĕ тет, вара çынĕ васкаса кайса мĕн кирлине хатĕрлет, кайса чӳклет.

## 759

Ĕлĕк-авал осал туса порнса Торхантай Торрипе Екремре пĕр çын çортапа. Вăл çортапа осал туват, çын вилет. (Торхантай Торри — киремет.)

## 760

Юсманпа чӳк тунă чухне чăвашсем Хĕрлĕ çыра асăнаççĕ. Хĕрлĕ çыр тесе авалхи чăваш патшалăхĕн çĕрне, йĕри-тавраршне асăнаççĕ: апла-капла хатĕр патша çĕрне ют çынсем, тăшмансем килсе çĕрпе пĕрле хамăра та пӳлсе ан илчĕр тесе вĕсене хирĕç Хĕрлĕ çыра чипер усрамашкăн Турăран тӳсĕмлĕхпе вăй-хăват ыйтаççĕ. Хĕрлĕ çыр хыçĕнчен вара çĕрти патшана асăнса уншăн та Турра кĕлтăваççĕ.

## 761

Кирeметсем кашни ял тавраршĕнчех пулнă. Акă Сурăм тăрăхĕнче Схатька ятлă питĕ хаяр вар пур. Инкек-синкек сиксе тухсан çынсем 10—15 çухрăмран чӳклеме çӳренĕ. Чӳк тунă чухне унта укçа, хăмла, эрех, çăмарта, çу, пыл, така панă. Унта выртакан шыва ĕçме те, иртсе кайнă чухне калаçма та юраман.

## 762

Пирĕн патра Полуй ятлă çĕр пур. Çав Полуй ак мĕнтен пулнă. Ĕлĕк унтан инçе мар кӳлĕ пулнă. Çав кӳлĕ куçнă чухне пулăсем тăкăнса юлнă та, вара Полуй (пулă уйĕ) тенĕ ун вырăнне. Вара ăна Полуй киремечĕ тенĕ. Ĕлĕк çав Полуйне пахча çаварнă тет. Унта пӳрт лартнă тет, унта сăра тунă тет те сăрине пыллантарса лартнă тет тата така пусса чӳклесе такине унтах панă тет. Иртсе каякансем вăл сăрана ĕçнĕ тет, сăра вырăнне укçа пăрахса хăварнă тет. Вăл укçана сăра хуçисем Киремете парăпăр тесе алтса хунă тет, халь те пулин çав вăхăтри укçасем тухаççĕ.

## 763

Ĕлĕк пирĕн енчи чăвашсен Турă пулман тет. Анчах кашни килĕн хăйĕн Мăнкĕлен турри, кил сыхлакан пулнă тет. Кашни кил картишĕнче

Мăнкĕлен турри вырăнĕ пулнă тет. Çак вырăн таса пулмалла пулнă тет. Унта тула тухма та юраман тет. Çав вырăна вара çав килте пурăнакансем кашни выльăх пусмассерен чӳкленĕ тет.

### 764

Мамале Турă умĕнче пурăнаканнисенчен çынна ку тĕнчере пурăннă чухне хĕн параканни пулнă; апла-капла кам та пулин е Турра, е унăн çумĕнче çӳрекенсене, е тата хăйне виç çул йĕркерен чӳк тумасăр хăварсан вăл вара çав килтен вăхăтсăр вилĕ кăларнă. Çавăнтан хăраса пирĕн чăваш çыннисем, çемйипе пурăнаканскерсем, кирек хăçан та унтан хăтăлма тăрăшнă. Чӳк тăвас пулсан виç çултан кая пĕртте хăварман, ялан виç-çĕмĕш çулĕнче туса ирттернĕ, халĕ те çаплах ирттереççĕ. Мамалене кирек хăçан та пăтăпа, юсманпа, шерпетпе чӳк тунă. Ăна чӳк тунă чухне Турă çулне улăхтараççĕ. Мамалене чӳк тунă чухне кирек хăçан та унтан çынна пурăнăç ыйтаççĕ. Çавăнпа ăна чӳк тунă чухне килти çынсемшĕн уйрăм-уйрăм чӳк тунă; малтан килти çынсенчен чи аслишĕн, тепĕр кунне ун хыççăнхишĕн, куллен çапла пуриншĕн те туса чи çамрăккипе пĕтернĕ. Кĕлтунă чухне малтан Турра кĕлтунă, унтан ыттисене те йĕркерен, чи кайран вара Мамалене хăйне кĕлтунă, ун ятне каласа сывлăх пар тесе асăннă. Кĕлтунă чухне пĕр кашăк пыла юсман тирки çине хурса пăлтăра илсе тухса Мамалене чӳк тусан кайран вара çав пылне шыв çине ирсе шерпет чӳкленĕ, чӳк пăттине çинĕ чухне çав шерпетпе сыпса çинĕ вара. Турă çулне укçа ак çапла улăхтарнă: пĕр пус е авалхи икĕ пăхăр укçана шывпа çуса пĕр шурă (таса) арçын кĕпинчен, çухи патĕнчен, таса çĕртен чĕрсе илсе, çавăн çине хурса пăлтăра илсе тухса: «Турă çулне укçа улăхтаратăп», — тесе асăннă. Кайран вара вăл укçана куланай укçисемпе пĕрле парса янă. Пĕриншĕн пĕр кунĕ çапла чӳк тусан, тепĕр кунĕ теприншĕн чӳк туса ирттерсе янă.

Мамале чӳкне кирек хăçан та карта пăтти чӳкне туса ирттерсен тума тăрăшаççĕ.

### 765

Пӳлертен Валĕм хуçа патне кайнă çĕрте, ту хĕррипе пынă чух, ту уçăлса кайса хĕрсем тухса çылăхсăр çынна исе кĕреççĕ. Унта вăсам темĕн тĕрлĕ илемлĕ чечеклентерсе пĕтернĕ шап-шурă тумтирсемпеле, тӳшек-минтерсемпеле пурăнаççĕ тет.

### 766

Чăвашсен малтан Турăран пуçне урăх ырăсем пулман. Тĕрлĕ усал ырăсем, юмăççем, чӳк тумалли йăласем пуçланса кайни çинчен ак мĕнле калаççĕ ват çынсем.

Пĕр çын тыр акнă. Акса пĕтерсен пуракне лартса сухалама пуçланă. Сухаласан-сухаласан таçтан çумăр тухса папай алта пуçланă. Çав вăхăтра ана çине пĕр çын чупса пырать те: «Ырă çын, тархасшăн хур мана пурак айне, эп çумăртан пит хăратăп, сана вара тем тĕрлĕ те спасибо калăп», — тет. Суха тăвакан çын çакна хĕрхенсе пуракпа хупласа лартать, пуракне çил йăвантарса ярасран тăпра муклашкипе пусарать. Пăртак тăрсан çумăр çумасăрах çанталăк уяртса каять, çыннăн та ани сухаласа пĕтет. Унтан лашине кӳлсе тăрататать те пурака уçса калать: «Каях ĕнтĕ, çумăр иртрĕ, эп

те киле каяп», — тет пурак айӗнчи ҫынна. Пурак айӗнчи ҫын тӑрать те: «Ӗнтӗ эп санран хӑпмастӑп, санпа пӗрлех пырап, илсе каймасан сана ямасп кунтан», — тет. Ҫын ним тума аптраса илсе каять кӑна килне. Ҫумӑртан хӑракан ҫын киле пырсан калать ҫынна: «Ӗнтӗ эс мана тӗпсакайне антар, Турӑ килсе ҫын ҫук-и сан панта тесен никам та ҫук те, вара эп сана пӗтӗм чир-чӗртен хӑтӑлтарса тӑрӑп». Кил хуҫи ӗненсе пытарать кӑна тӗпсакайне. Нумай та тӑмасть, Турӑ пырса кӗрет те: «Ҫын ҫук-и кунта?» — тет. Кил хуҫи: «Ҫу-ук, Тур-папай, ҫук никам та», — тет. «Ҫук пулсан ҫук пултӑр эппин, эп кайсан тӗпсакайӗнчи ҫынна ҫуллӑ пӑтӑ пӗҫерсе пар, унтан кӑвакал, хур, сурӑх, ӗне, лаша пуса-пуса пар», — тет те Турӑ тухса каять. Вӑл тухса кайсан нумай та тӑмасть, хай тӗпсакайӗнчи ҫын сухӑрать: «Пӑтӑ пӗҫерсе па-ар! Пӗҫермесен халех варна ыраттарса вӗлереп!» — тесе. Ҫын ним тума аптӑраса тӑрать, анчах ҫавӑнтах варӗ ыратма пуҫлать те хӑвӑртрах маткине пӗҫерттерет ҫуллӑ пӑтӑ. Пӑтӑ пӗҫерсе парсан кун варӗ чарӑнать. Ҫапла пӗр кун иртсе каять аран-аран. Тепӗр кунӗнче каллех ҫухӑрать сакайӗнчен: «Кӑвакал пусса пар!» — тесе. Кил хуҫи ӗнтӗ тем пекех ӳкӗнет ку инкеке ҫумӑрпа Турӑран хӑтӑлтарнӑшӑн, халь пулсан пӗр сӑмахсӑр Турра кӑларса парӗччӗ, анчах иртсе кайсан ним тума та ҫук, — тимӗре хӗртнӗ чух ҫапаҫ, варӗ каллех ыратма пуҫлать те — кӑвакала пустарать. Кӑвакала пусса парсан кун варӗ лӑштӑрах каять. Виҫҫӗмӗш кунӗнче каллех: «Хур пусса па-ар!» — тесе ҫухӑрать. Кил хуҫи каллех варне ыраттарасран хӑраса хурне пӗр сӑмахсӑр пусса парать. Тата пӑртак тӑрсан сакайӗнчи ҫын каллех: «Сурӑх пусса пар!» — тесе ҫухӑрать. Мӑнтарӑн ҫынни сурӑх та пусса парать. Сурӑха ҫисе ярсан каллех: «Ӗне пусса пар!» — тесе ҫухӑрать. Ӗне те пусса параҫҫӗ кӑна. Ӗнине ҫисе ярсассӑн леш каллех: «Ӗнтӗ лаша пусса пар», — тет. Ҫын вилесрен хӑраса пӗртен-пӗр лашине пусса парать ҫак инкеке. Ҫапла ҫын тӗп пулса юлать ҫак инкеке пула. Ҫак сакайӗнчи ҫын кил хуҫине тӗп тусан кӳршисене чирлеттере пуҫланӑ. Кӳршисем ку чир кам ырлӑхӗпе пулнине пӗлеҫ те кӑвакал, хур, выльӑх пусса параҫ кӑна. Ҫапла ку инкек тӗпсакайӗнче ялти ҫынсене чирлеттерсе ларса икшер-виҫшер хут ҫисе тухнӑ кашни килӗрен. Ун ырлӑхӗпе пӗтӗм ял ҫука юлнӑ чӳк туса парса. Вара ялти ҫынсем тертленсе ӑна сакайӗнчен сӗтӗрсе кӑларса пӗр тарӑн ҫырма хӗрӗнчи ват хурама кутне кайса янӑ. Вӑл хурама кутӗнчен те ыраттарма пуҫланӑ ҫынсене. Вара ҫынсем ун ячӗпе мӗн те пулин пӗҫерсе е пусса чӳк туса тӗкпе-ҫӳҫпе, шӑмми-шаккипе ҫав хурама кутне кайса пӑрахмалли йӑла тунӑ. Ҫав хурама кутне кайса янӑ ҫынна чӑвашсем Киремет тее пуҫланӑ. Киремет хӑй ҫеҫ пулман-мӗн, унӑн ҫемйи те пулнӑ, вӗсем пӗтӗм таврана саланса ҫынсене ыраттарса, чун илсе пурӑна пуҫланӑ.

Вӗсем хӑшӗ Киремет, хӑшӗ Йӗрӗх, хӑшӗ Ырӑ пулса кайнӑ. Киремет пурӑннӑ ялти ҫынсем Киремет ҫинчен ытти ял ҫыннисене каласа пӗлтернӗ, вӗсем — тата урӑххисене. Ҫапла Киреметпе ун ҫемйине пӗтӗм ҫын пӗлекен пулнӑ. Киремет валли мӗнле чӳк тумаллине, мӗнле Киремет е ӑсти Йӗрӗх тытнине пӗлсе тӑракан ҫынсене юмӑҫсем тенӗ. Чӳк тумалли йӑла, юмӑҫсем, асамҫӑсем, вӗрӳҫӗсем ҫавӑнтан пуҫланса кайнӑ.

Ҫав Киремете Турӑран пытарса хӑварман пулсан ӑна Турӑ ҫапса вӗлеретчӗ те, нимле Киремет те пулмастчӗ, пӗтӗм ҫын пӗр Турра ҫех ӗненсе пурӑнатчӗ.

Киремет халь пит ватӑлса суккӑр пулнӑ та пӗччен пурӑнаймасӑр кӗрӳшӗ патне кайнӑ пурӑнма. Анчах кӗрӳшӗ килӗштерейменсӗр унпа пӗрмай вӑрҫса

пурăнать тет. Киремечĕ, суккăрскер, хăй пĕччен никама та тытса хутлатаймасть. Халь çавăнпа чăвашсем пăрахнă Киремете, ĕлĕкхи пек, лаша пусса пама мар, пĕр татăк çăкăр та тухса пăрахмаççĕ. Пит ватă карчăксем çех хăш чухне пĕр-ик пренкĕ тухса пăрахаççĕ. Киремет çавăнпа çеç тăранкаласа пурăнать хăль ватăлмалăх кунĕнче. Ĕлĕк ик-виç хут чӳклемесĕр кĕлле кĕместчĕ акшă-макшă.

### 767

Пĕрре вăл (Шăпачав пуянĕ Маркка) Кипе киремете тӳрлетме кайнă тет. Пырсассăн, пĕтĕм хатĕрлесе çитерсен ак çапла каланă тет: «Эй, Кипе, мĕн чухлĕ эпĕ сана парне паратăп, анчах пĕлместĕп — эсĕ чăн-чăнах пурши, çук-ши? Чăнах та çавăнта пурăнатăн пулсассăн мана курăн», — тенĕ тет. Вара ун умне хĕрлĕ чаршав карăнса тăчĕ тет те, аял енчен симĕс пушмак пуçĕ курăнчĕ тет. Çавна курсан Маркки пит хĕпĕртесе килне таврăннă. Халь çавна илтнĕ чăвашсем пурте киреметсем пуррине ĕненеççĕ. Анчах: «Ăста халь киреметсем?» — тесессĕн ватă çынсем ак çапла калаççĕ: «Ревис чухне хирсене сăнчăрпа виçрĕç, çавăн чухне киреметсем, йĕрĕхсем, арçурисем сăнчăртан хăраса Атăл урлă Йăлăма тарнă», — теççĕ.

### 768

Шĕнер киремечĕ çĕнĕ çĕре кайни çинчен çакăн пек халап çӳрет. Шупашкар уесĕнче Апаш ятлă ял пур. Çав ялтан çурçĕрелле тухсан уй пур. Вăл уя Шĕнер уйĕ теççĕ. Çак уйăн хĕрринче юхса выртакан çырма пур. Вăл çырма Шĕнер ятлă. Шĕнер леш енче вăрман пур. Вăрманĕ Шĕнерпоç Саккас ятлă. Вăрман хушшинче типĕ çырма пур. Типĕ çырман лаппинче хырсем лараççĕ. Хырсем патĕнче пысăк чулсем выртаççĕ. Çав чулсене Киремет пӳрчĕн никĕсĕ пулнă теççĕ. Апашра пĕр Микка ятлă ватă старик пурччĕ. Вăл старик хăватлă вĕрӳçĕччĕ. Выльăх-чĕрлĕх е ача-пăча чирлесен ун патне суртма каяччĕç. Вăл ирхине апат çиеччен сурса панă шыва ĕçтерсен выльăх-чĕрлĕх чăнах та сывалатчĕ. 1860 çулсенче ака уйăхĕнче çак Микка Шĕнер уйне тырă акма кайнă. Вăл чылай çĕрлерехех уя тухнă. Уйра нимĕн сас-чӳ те пулман. Тырă акма ытла тĕттĕмрен çак Микка лашине тăварса утă панă та хăй урапа патне ларнă. Вăл урапа айккинче ларнă чух темĕн çутти курăнма пуçланă. Мĕн-ши ку тесе вăл сиксе тăнă та Шĕнерпоç Саккас еннелле çаврăнса пăхнă. Çав Саккас çырминче ĕлĕкренех Киремет пулнă. Вăл Киремет таврари киреметсенчен чăн асли пулнă. Вăл Киремете чăвашсем Шĕнер киремечĕ теççĕ. Ăна Турă ывăлĕ тесе хисепленĕ. Микка çав Киремет еннелле тинкерсе пăхса тăнă. Малтан Киремет пурăннă хыр кутĕнчен уйăх çавраки пек çутă çичĕ хут йăлтлатса тухрĕ тет. Унтан пĕтĕм вăрман çуна пуçларĕ тет. Вăрмантан хура тумтирлĕ çынсем тухрĕç тет. Кӳмеллĕ урапасем курăна пуçларĕç тет. Ураписем, туртисем, пĕккисем ылттăнтан тунă тет. Кашни кӳммине ултшар урхамах кӳлнĕ тет. Çыннисем тем çинчен кăшкăрашса калаçаççĕ тет. Киремечĕ пӳртĕнчен чаплă улпут пек тухрĕ тет. Ун патне икĕ çын пĕр кӳмеллĕ урапа çавăтса пычĕç тет. Хай шавлакан çынсем Киремете курсан шăп пулчĕç тет те хыпаланса урапасем çине ларма пуçларĕç тет. Вара Киремечĕ: «Кайăпăр ку çĕртен!» — тесе хытă сасăпа каларĕ тет. Çĕр чĕтресе кайрĕ тет. Пĕтĕм вăрмана шатăртаттарса çĕмĕрсе, вут-хĕм кăларса мал еннелле тухса кайрĕç тет. Кире-

метĕн пĕр тарçи урапа çине ларма ĕлкĕреймесĕр çавăнтах тăрса юлчĕ тет. Паянхи кунччен çав Шĕнер киремечĕ пурăннă вырăнта унăн тарçи хуралçă пек анчах пурăнать теççĕ ваттисем.

## 769

Суха тăвакан чăваш патне пилĕк тутар улпучĕ пырса сывлăх суннă. Ăçта каятăр тесе ыйтсан тутарсем каланă: «Эпир сирĕн хирти пилĕк киреметĕрĕн пуçлăхĕсем, çуртăмăрсене, хăвасене касса, çунтарса ячĕçĕ урлах сухаласа çӳреççĕ. Хуйхин сăлтавĕ çакăнта. Вĕсен пуçлăхĕ пулнă. Аслă киремет чăвашсем хушшинче Кĕçĕн киреметсене вырнаçтарса пĕтерсен сывăрма выртнă. Выртас умĕн çапла каланă: «Эсир мана çуй киле пуçласан тăратăр», — тенĕ. Лешсем «çуй» тени мĕне пĕлтернине ăнланайман. Темиçе çул иртнĕ. Вĕсем Аслă киремете вăратсах çуй çинчен ыйтса пĕлме шутланă: «Çуй килет, час тăр, папай!» Ватă Киремет вăраннă та хĕвел анăçнелле пăхса: «Эсир мана та, хăвăра та пĕтертĕр; енчен те эсир мана вăратман пулсан эпĕ çуй килечченех сывăраттăм (çуй тени вăл тĕнче пĕтнине пĕлтернĕ иккен), халь сире пур çĕртен те хăвалама, çуртсене çĕмĕрме пуçлĕç», — тенĕ те вилсе кайнă. Кун хыççăн киреметсен пурнăçĕ йывăрланнă, вăйĕ те пĕтнĕ. Вĕсен тарса каймалла килсе тухнă». Çакна каласа парсан тутарĕсем урапа çине ларнă та кайнă.

## 770

Шетмĕ патĕнче Сăмсах ятлă киремет пур. Çав вырăнта ĕлĕк пысăк вăрман пулнă. Вăл вăрмана касма питĕ хăранă. Ялта çырăва вĕрентме пуçласан пĕр çын ăна касма шутланă. Вăрмана халăхран сутăн илнĕ те каснă. Касма пуçланă чух: «Эпĕ касмастăп, Тăраха касать», — тенĕ.

Тепĕр каç тĕлĕкре пĕр çын çав Киремет кушак пулса тарнине курнă. «Манăн çуртăма çĕмĕрчĕç, çавăнпа таратăп», — терĕ тет Киремет.

Чăвашсем Киремет çинчен ватăлнă, супнă, ватăлнăçем суккăрланнă, çавăнпа ăна улталама та май пур теççĕ. Вара ăна валли кĕмĕл укçа вырăнне пăхăр укçасем пăрахаççĕ.

## 771

Пĕр чăваш Шупашкартан килне таврăнма тухнă. Шупашкарта вăл больницăра пулнă: унта вăл пăсăлнă куçĕсене тӳрлеттернĕ. Нумаях та выртман вăл шăпиталра*, докторпа фельдшер тăрăшса час тӳрлетнĕ чирлĕ куççене. Чăваш савăннипе хавассăн утнă килĕ еннелле. Хăй тĕллĕн вăл çапла пуплесе пынă: «Ав епле кураççĕ куççем! Ĕлĕк пулсан куçăмсене юмăç имлеме тытăннă пулĕччĕ. Вăл тĕрлĕ йĕрĕхсене, киреметсене ăна-кăна пама хушнă пулĕччĕ. Киреметсем çине шанса суккăр пулса ларнă пулăттăм».

Курах кайнă чăваш: килет-мĕн Атăл еннелле пĕр кӳме, ăна виçĕ лаша туртаççĕ-мĕн, мĕншĕн тесен лашисем те ырхан, вăйсăр, экипажĕ те кивĕ, лăнчăр-лăнчăр-мĕн. Кучерĕн те, кӳме ăшĕнче ларакан улпучĕн те тумтиррисем те кивелсе çитнĕскерсем çеç, ӳчĕ-пĕвĕ те ырхан, типшĕнкĕмĕн.

---

* Пульницăра.

Чăваш пĕчик çырма урлă кайнă. Йĕрĕх варĕ ятлă пулнă çырми. Кунта, чăнах та, ĕлĕк паллă Йĕрĕх пулнă. Вăл халĕ те йăлтах пăрахăçа тухманни курăнсах тăнă: Йĕрĕхĕн çăлкуçĕсенче пĕр çăмарта, нухрат тата мемеле выртнă. Виç лаша кӳлни Йĕрĕх тĕлĕнче чарăнса тăнă. Кӳме ăшĕнче лараканни кăшкăрса каланă: «Ну, Йĕрĕх тус, кунтан тарма шухăшламастăн-и?» — тенĕ. «Халиччен тарма шухăшламан-ха: пăртак ăна-кăна паркалаççĕ-ха. Анчах ик-виç çултан, тен, тарма та лекет пуль», — тенĕ Йĕрĕхĕ. Кӳмери каланă: «Эпĕ авă Чăваш çĕршывĕнчен таратăп Атăл леш енне, çармăссем патне, каятăп. Кунта, чăваш хулинче, выçă вилĕн, мана, Киремете, хисеплеми пулчĕç. Юмăççем патне пыми пулчĕç; вĕсен вырăнне докторпа фельдшер патне каяççĕ. Мана парнесем пами пулчĕç. Юмăç вырăнне пуп таврашсем тухрĕç, халăха чиркĕве хăвалама пуçларĕç. Тата ялсенче шкулсем уçаççĕ, вĕсенче ачасене мана хирĕç тата сана хирĕç те вĕрентеççĕ. Тата вĕсене полицисем те пулăшаççĕ. Ман йывăççене касса пĕтерчĕç, йăвасене çĕмĕрчĕç, çунтарчĕç, мана хисеплекенсене суда параççĕ, касамата хупаççĕ. Мана йăлт çаратрĕç, йĕри-тавра хуплаççĕ. Малалла лайăххрах пуласси кĕтмелли çук... Çавăнпа таратăп эпĕ. Атăл леш енче, вăрмансем хушшинче, мана хисеплекенсем пулĕç-ха. Вĕсем патне каятăп», — тенĕ. «Ну, сывă пул эппин». «Сыв пулса юл эс те, ачам!» — тенĕ те Киремет лашисене хăвалама хушнă. Кӳме кĕмсĕртетсе Атăл хĕрнелле кайнă.

Шупашкартан килне таврăнакан чăваш çӳлĕ тĕме çине хăпарса тăнă. Кунтан ăна Киремет кӳмипе лашисем те, тĕкĕр пек çуталса выртакан Атăл та, ун хыçĕнче выртакан тĕксĕм симĕс йăлăм вăрманĕ те лайăх курăннă. Чăвашăн Киремет Атăл урлă мĕнле каçнине курасси килнĕ, çавăнпа вăл кӳме çинелле пит тилмĕрсе пăхнă. Акă вăл картин çинчи пек курать: лашасем кӳмене Атăл хĕррине илсе пычĕç, унтан лашисем те, кӳми те пăч куçран çухалчĕç, таçта кайса кĕчĕç. Паром та, кимĕ те çук Атăл çинче. Сасартăк виçĕ лашаллă кӳме Атăлăн леш енче таçтан сиксе тухрĕ. Вăл мăкăль-мăкăль турĕ те вăрман ăшне кĕрсе çухалчĕ. Çапла вара, пирĕн чăваш Киремет Чăвашра Атăлăн леш енне каçса кайнине хăй куçĕпех курнă, вăл мĕншĕннине те, вĕсем Йĕрĕхпе сăмахланине итленĕ пирки, лайăх пĕлнĕ ĕнтĕ. «Киремет пирĕн çĕртен тарчĕ ĕнтĕ, Йĕрĕх нумаях пурăнаймĕ. Халăхăн пĕлĕвĕ ӳснĕ май этеме хăратса пусмăрлакан тăшмансем пурте тарса пĕтĕç акă!» — тенĕ чăваш хăй тĕллĕн савăнса. Вăл вара утнă килнелле пысăк хаваслăхпа.

## Ăрăмлăх ăстисем:
## юмăç, пĕлӳçĕ, вĕрӳçĕ, чĕлхеçĕ

*Авалхи йăласене тытса пурăннă сынсем çинчен каланине шута илмесĕр хайла-халапа ăнланма йывăр. Йăлисене пĕлсе тăраканĕсен тăвата ушкăнĕ паллă: пӳлĕхçĕсем, ăрăмçăсем, мăчавăрсем, пăскăчсем.*

*Пӳлĕхçĕсем çынпа, унăн сывлăхĕ-кăмăлĕпе тӳррĕн çыхăннă. Ку шута апăс, папаçça карчăкĕ, пĕлĕмçĕ кĕреççĕ. Вĕсем инкек, чир-чĕр, ăш пиççи сиксе тухсан пулăшаççĕ; сăмахпа, им-çампа, ырă хăватсен ячĕсемпе уçă кураççĕ.*

*Пăскăчсен (пăскăнçă, пăскăнчăк, пăсташçă тата урăхла та калаççĕ) йышне тухатмăшсем, куç ӳкерекенсем, хаяр яракансем, тĕрлĕ пăскăчсем кĕреççĕ.*

*Мăчавăрсем çинчен XVIII—XIX ĕмĕрсенче калаçма та юраман. Вĕсене чĕррĕнех çĕре чикнĕ; чăваш тĕнне астăвакансене тĕппи пĕтернĕ. Ку ушкăнра*

*чăваш сартăшĕн ăстисем — мăчавăр, эптер, элмен, ламшар, мамале тата ытти йĕркелӳçĕсем пулнă.*

*Халăх сăмахлăхĕн пуян тĕслĕхĕсене упраса пурăннă тепĕр ушкăнри ăстасем — ăрăмçăсем: юмăç, пĕлӳçĕ, вĕрӳçĕ, чĕлхеçĕ. Вĕсен пĕлӳ шайĕ пысăк, чĕлхиçăварĕ пуян, сиплев мелĕсем нумай пулнине кăтартакан пин-пин тĕслĕх упранса юлнă. Паллах, чăваш тĕнĕ патшалăхра хăйĕн вырăнне çухатсан ăрăмçăсемпе мăчавăрсем çинчен ырăпа çыракан сахал тупăннă. Вĕсем çинчен миссионерсене каласа паракансене сутăнчăксем тенĕ.*

*Чăваш хайлалăхĕн кĕнекине ăрăмçăсем çинчен каланă хăш-пĕр тĕслĕхсене кĕртнĕ.*

## 772

Юмçă, пăсăмçă, тухатмăш, асамçă, вĕрӳçĕ, чĕлхеçĕ. Халĕ пирĕн патра çук, пирĕн хальхи чăвашсем кунта вĕсене ĕненмеççĕ. Ĕлĕк вĕсем нумай пулнă. Пирĕн маçи* хăй те юмçă пулнă. Кайса тет тыр вырма. Мами килнĕ киле ирхине апат тума. Маçи тырă вырса кайнă чух пăхать: выртать тет укçа, илет те пăхать укçана, çав укçа витĕр курăнать тет мами килте апат пĕçерни, пăхать те тĕлĕнсех каять. Мами килте апат пĕçерчĕ тет те хурана хывнă чух çуррине тăкса ячĕ тет. Çитет мами ана çине, хăй укçине маçи кăсьяна чиксе тет. Маçи калать: «Ма сахал пĕçерсе, — тет, — апата?» Мами: «Сахалтарах пулчĕ-ха», — тесе калать тет. «Чĕресе хывнă чух тăкса ятăн та», — тесе еларĕ тет маçи. Вара мами шалтах тĕлĕнсе кайрĕ тет. Вара маçи çав укçапа юмăç пăхатчĕ тет, вара пирĕн атте çитĕне пуçласан çавă укçана кайса пăрахтарса тет. Как укçине кайса пăрахсанах сумар пулчĕ тет, вара нумай та пурăнмарĕ, вилчĕ тет.

## 773

Çемьере пурте сывă чухне чăвашсем туррисене вăхăт-вăхăтпа анчах чӳклетчĕç; çемьере кам та пулин чирлесен юмăç каланипе чӳкне те нумай тăватчĕç, чиркӳ туррисене пуççапма та час-часах чупатчĕç. Пирĕн атте-аннесем çынна Киремет е Йĕрĕх, е Вутăш, е Тӳркĕлли, е урăх турăсем тытса чирлетеççĕ тесе ĕненетчĕç, е тата вилесем тытнăран чирлет тесе ĕненетчĕç, тата ăншăрт ӳкнипе, Çил хаяр лекнипе, Ийе çыпăçнипе е çип çĕлен кĕнипе чире каять тесе ĕненетчĕç, тата çын пăснипе чирлет тесе те ĕненетчĕç. Çемьере пĕри чирлесен е выльăх-чĕрлĕх сывмарлансан хăвăртрах юмăç пăхтарма чупатчĕç. Юмăç кам çине кăтартса калать, çав Киремете е Турра пуççапатчĕç. Ун чухне чăвашсем юмăç каланине пит ĕненетчĕç. Эпĕ 7—8 çулхи ача чухне пĕрре вар ыратнипе аптăрарăм та, анне мана Вăрман кассинчи юмăç патне — Симун карчăкки патне — илсе кайрĕ. Мана çиелти тумтире хывтарса кĕпе пиçиххине салтрĕç те сак çине месерле вырттарчĕç. Юмăç карчăкки аллине кĕпе айĕнчен хырăм çинелле чиксе ячĕ те хырăма аллипе пуса-пуса калать: «Ак кунта Ишек хытти, ак тата Кипĕт хытти. Ишеке çурта кайса памалла, Кипĕте хур пусса чӳклемелле», — тет. Анне юмăç каланине пĕр шарламасăр итлесе ларать. Аттесем тепĕр кунах Кипĕте хур пусса чӳклерĕç, атте Ишеке Микул турра пуççапма тухса кайрĕ.

---

* Мăн асатте, прадед.

Юмăçсем тĕрлĕ майпа юмăç пăхатчĕç: хăшĕ çăкăр татăкне çип вĕçне çыхса суллантарса пăхатчĕ, тата хăшĕ укçа çине е ал тымарне тытса пăхатчĕ. Чир ăçтан пулнине, ăна мĕнле Турă е мĕнле Киремет янине çăкăр татăкĕ сулланнă тăрăх пĕлетчĕç. Укçапа юмăç пăхакансем икĕ пуслăх е виçĕ пуслăх пĕрер укçа çине пăхса пĕлетчĕç: укçине малтан шывпа çуса тасататчĕç.

1869 çулта пирĕн анне тиф чирĕпе хытă чирлерĕ. Кăшарни кунĕ (январĕн улттăмĕшĕнче*) эпир аттепе иксĕмĕр ирех тăрса Чурачăка Турă шыва аннине курма кайрăмăр. Чурачăка çитсен Микки карчăкки патне юмăç пăхтарма кĕтĕмĕр. Микки карчăкки аттерен çичĕ пуслăх пăхăр укçа илчĕ те, ун çине пăхрĕ-пăхрĕ те каларĕ: «Укçа çинче çурта çунни курăнать: сирĕн килте виле пулмалла», — терĕ. Вăл çапла каласанах нумай та лармарăмăр, хамăр кӳршĕри Кĕркури пичче ывăлĕ Çемен каштăрт пырса кĕчĕ те аттене: «Хлимон пичче, инке вилчĕ», — терĕ. Çавна илтсен аттепе иксĕмĕр те макăрса ятăмăр, юмăç патĕнчен хыпаланса тухрăмăр та килелле чуптартăмăр. Атте Çеменпе пĕрле пĕр çуна çине ларчĕç, эпĕ вĕсем хыçĕнчен хамăр лашапа пĕчченех ларса таврăнтăм, çул тăршшĕпе макăрса таврăнтăм. Эпир Чурачăкран тухсанах апат кĕллине кĕме чан çапса ячĕç.

Киле чир пырса кĕрсен е урăх инкек пулсан юмăçсем тата ак çапла калатчĕç: сирĕн пата кам та пулсан, сире курайман çын, укçа пырса пăрахнă, сире çав укçа аптăрататать, ăна тасатас пулать тетчĕç. Аттесем вара çав укçана шырама киле юмăç илсе пыратчĕç те лупас айĕсене, кĕлет айĕсене кĕрсе пырса пăрахнă укçана шыратчĕç. Шырасан-шырасан чăнахах та пĕр пăхăр укçа тупатчĕç, вара ăна юмăç ăçта пăрахма е пама хушать, çавăнта кайса паратчĕç.

Чăвашсем тата юмăçсене тĕлĕк курма калатчĕç. Юмăça тĕлĕк курма пиçиххи е урăх япала кайса паратчĕç те çывăрнă чух ăна пуç айне хурса çывăрма калатчĕç. Ирхине вара юмăç хăй курнă тĕлĕк тăрăх чир мĕнтен пулнине, ăна епле тасатма кирлине каласа кăтартатчĕ. Ĕлĕк чăвашсем тĕлĕке пит ĕненетчĕç. Пирĕн анне калатчĕ: эпĕ тĕлĕкре тутар улпутне курсан вăл Кипĕт киремет пулать, вырăс улпутне курсан вăл Çĕн ыр киремет пулать, Чăрăшри Микулай вăртахăма курсан вăл Ишекри Микул турă пулать тетчĕ. Пирĕн ялта мăкачей кĕлечĕ патĕнче пĕр Мишка вырăс хуралра пурăнатчĕ. Унăн майри картпа юмăç пăхатчĕ, тĕлĕк тăрăх та каласа паратчĕ. Юмăç каланипе чăвашсем темĕн те пĕр тăватчĕç. Амăшĕ чирлĕ ачине вилĕмрен хăварасшăн, юмăçсем вĕрентнĕ тăрăх, чирлĕ ачи вырăнне чустаран кĕлетке туса ăна вилнĕ çынна тумлантарнă пек тумлантарса шăтăка кайса пытаратчĕç. Ĕлĕк çавăн пеккисем чăваш хушшинче ытла та нумайччĕ.

## 774

Ăрăмçă ăрăмлать. Ăрăмçăпа çапăçма хăрамалла теççĕ чăвашсем. Çапăçса çăрăнсан ăрăмçă хăй çилленнĕ çыннине сăмах каласа чирлетет те вĕлерме те пултарать. Ăçта çăмарта ăрăмласа пăрахать вăл çын патне, çавăнпа чăвашсем хапха умĕнче çăмарта выртнине курсан вăл çăмартана илмеççĕ.

* Çĕнĕ стильпе январĕн 19-мĕшĕ.

## 775

Пăсăмçă вăл çав тухатмăш манирлех, çавăн пекех пăсать. Пăсăмçă вăл тыр-пула пăсма пултарать, çемьесене çапăçмалла тума пултарать. Вăл тата çынна пăсма ак çапла пултарать: çын вилсен масар çинчен шăтăкран кăларса пăрахнă тăпрана илсе килет те çын вырăнĕ çине сапса çынна пăсма пултарать. Унтан вара тата выльăха-чĕрлĕхе пăсма пултарать. Чăвашсем çав пăсăмçăран пит хăраççĕ, ăна хирĕç пулсан чĕнмесĕр иртмеççĕ.

## 776

Пирĕн Мăн Ямаш ялĕнче Матвеева Евдокия Петровна пурăнать. Вăл 1903 çулта çуралнă. Ăна чĕнме Ультӳтти тесе чĕнеççĕ. Вăл чирленĕ çынсене, уйрăмах ачасене, хăй майлă сиплеме тăрăшать. Этем мĕнпе те пулин чирлесен, вăл вырăнпа выртать пулсан вăл унтан пуçелĕк тума пĕр-пĕр япала илнĕ: вара хăй çывăрма выртнă чухне пуç айне хурса çывăрать. Вăл вара тĕлĕк курать имĕш. Çав тĕлĕк тăрăх, чирленĕ çыннăн Киремете укçа е пиртен çĕленĕ япала кайса пăрахмалла пулнă. Çавăн хыççăн вăл чĕлхе сурăмпа этеме сыватнă пулать.

## 777

Кил ăш-чиккинче кирек кам сыв мар пулсан час-часах юмăç патне чупса каяççĕ. Юмăç патне пырсан: «Ман килте çапла ача сыв мар пулчĕçке», — тесе каласа кăтартаççĕ. Вара юмăç кĕç çип вĕçне çăкăр хытти çыхса суллантарма тытăнать. Суллантарсан-суллантарсан калать: «Сан ачу Йĕрĕхрен, сана вăл пĕр така пусмасăр та каçарас çук», — тет.

## 778

Юмăç пăхакансен уй варне тухмалла. Унтан чĕркуçленсе ларса чĕркуççи çине юр хумалла. Итлемелле. Пуртă сасси пулсан кăçал çын вилет, трантас сасси пулсан çын качча каять е авланать.

## 779

Яла мур килнĕ тет. Кашнинех выльăх вилет тет. Пирĕн кукаçи аптранипе вара юмăçа кайнă тет. Хăй юмăç тĕпсакай алăкне уçнă тет те пуçне унталла чикнĕ тет. Пирĕн кукаçи вара вăрттăн пăхнă тет те юмăç йĕпхĕм хура йытăпа тутине пĕрлештернине курнă тет. Юмăç тĕпсакайĕнчен пуçне кăларнă тет те: «Мĕн куртăн?» — тесе ыйтать тет. Кукаçи: «Йытă куртăм», — тесе калать тет.

Çав юмăçа илсе килсен вара нимле выльăх та вилмен тет. Юмăçĕ яла килсе темле тӳрлетсе хăварнă тет вара.

Çакăн хыççăн вара выльăх-мĕн чирлес, вилес пулсан яланах юмăç патне каятчĕç тет.

## 780

Пирĕн ялта Санькка ятлă ватă карчăк пурăнатчĕ, ăна пурте юмăç тетчĕç. Çав вилме пуçласан ниçтан вилеймен тет. Юмăçсем хăйсен юмăçне никама та вĕрентсе хăвармасан час вилеймеççĕ тет вĕсем. Ку Саньк-

ки те: «Кин, аллăна пар-ха, тăхлачă, аллăна пар-ха», — тесе калать тет. Тăхлачи: «Аллăра ан парăр, вăл юмăçне парса хăварать», — тесе калать тет.

Вара тăхлачи пĕр вăрăм кăна патак илтĕм те урам варне тухса лартăм тесе калать тет. Патакне тытрăм та: «Эп сана çав Санькكан юмăçне парса хăваратăп», — тесе каларăм тесе калать тет. Вара Санькка ним пулман пекех вилсе кайрĕ тесе калать тет.

### 781

Пăсакан çын вăл этеме те пăсать, выльăха та пăсать. Выльăххане çăмне касса илсе каять тет те Киремете çĕр айне кайса варать тет темскер каласа, Усал сывлăшĕпе вара выльăх вилсе пĕтет. Е хĕн курса пурăнсан-пурăнсан вилет. Тата вăл пăсакансем этемме те пăсаççĕ тет, этемĕн çӳçне е йĕм кантрине, е пыр çыххине татса илсе каяççĕ тет те Киремете е масар çине кайса çĕр айне вараççĕ тет, вара çын хĕне каять е суккăр пулса ларать. Тата арпе арăмне вăрçса пурăнмалла пăсаççĕ, вара лешсем ĕмĕр-ĕмĕрех вăрçса ĕмĕрне ирттереççĕ, тӳр-тӳрлĕхпе пурăнмаççĕ. Вăл пăсакан çынсем пурте хĕрарăм теççĕ. Пăсма кайнă чух вĕсем эртелпе каяççĕ тет, çӳçĕсене салатса яраççĕ тет, пиçиххине салтса яраççĕ тет. Пăсакан пĕри çырмара выртать тет, тепри сăрт тăрне хăпарса выртать тет. Çын-мĕн тĕл пулас пулсан вара вĕсем йăтă пулаççĕ тет те вĕçтереççĕ тет вара.

### 782

Юмăça Шуйттан вĕрентсе ларать. Пĕр çыннăн укçа çухалнă, вăл киннe шанман, юмăça кайнă киннин ывăлĕпе. Юмăç пăхнă вăхăтра сакайĕнчен мăйракаллăскер тухрĕ тет, юмăça каларĕ тет: «Укçине ĕне çинĕ, эс кинĕ çинех кала, вара ăна хуняшшĕ хĕнет, кинĕ çакăнса вилет те пирĕн çын пулать», — тет. Çак сăмахсене çамрăк ача, аслашшĕпе юмăç патне ларса кайнăскер, итлесе ларнă, аслашшĕне каласа панă, аслашшĕ ĕнине пуснă та, укçи ĕне ăшĕнчен тухнă.

### 783

Чĕлхе пĕлекен, чĕлхе вĕрекен çынсем Янăш вулăсĕнче халĕ те чылай пурăнаççĕ. Чĕлхе пĕлекен çынсем нимрен те пăрăнмаççĕ тет, вăрăра-мĕнре тытса хĕртсен те часах сываласçĕ тет. Анчах вара пилеш е çĕмĕрт йывăççинчен тунă туяпа хĕртсессĕн çавăнтах чирлесе вилеççĕ тет. Тĕнчере пур япалан та хăй чĕлхи пур тет. Пĕр-пĕр ялта вут тухсассăн чĕлхе пĕлекен çын хăйне çиллентернĕ çынсен килĕсене тĕллесех сунтарса яма пултарать тет. Вутти чарăнтăр тесессĕн çав чĕлхе пĕлекен çын хăй килĕ-карти тавралла вуттăн усалне ылханса виçĕ хут сурса çаврăнать тет те, вут пĕчĕккĕнех сӳнсе ларать тет.

Чĕлхе вĕрекен çын хăйне çиллентернĕ çынна пĕр-пĕр çăкăр е яшка çине вĕрсе парать тет, лешĕ вара темĕн тĕрлĕ хурлăх курса вилет тет. Кирек мĕне сумнă чухне «ăстасем» çынĕн пĕр-пĕр кĕпе-йĕм таврашри япалине «çак япала хуçи (çырмана сумнă чух) çак çырма пек типсе лартăр» е (хăр йывăça сумнă чух) «çак йывăç пек хăрса лартăр» тесе пăрахаççĕ тет те, вара сумнă çынĕ кунтан-кунах типсе-хăрса ларать тет.

# VII. ХАЯРСЕМПЕ УСАЛСЕМ. ЭСРЕМЕТ ПĂСКĂНĔ

*Халап тĕнчинче ыр-хаярпа усал-тĕсел йышĕ пысăк. Çак икĕ ушкăна кĕрекен вăйсене уйăракан паллă — ырăсене чӳкленĕ чухне парне параççĕ; хаярсемпе усалсене чыс-хисеп те тумаççĕ.*

*Хаярсен ушкăнĕнче хăйсен туррисем пур. Вĕсен шутĕнче — вилĕм турри Эсрел, вăрçă-харçă турри Сехмет, вĕри çанталăк турри Типшар, манăçу турри Мăртăк тата ыттисем. Вĕсен ытти турăсенни пекех хăйсен йышĕ: тăранĕ, кĕтенĕ, çуначĕ, хыпарçи. Тата иккĕмĕш-виççĕмĕш шайри турăсем йышлă: Аташ, Асат, Хăят, Хаярак, Алпаш, Авăрхат, Арăш, Амак, Сарамак, Ачăчă, Аçтанкă, Апăрша... Вĕсене шутласа кăларман, халапĕсене пухса çитермен. Пĕр чухне хăйсене турăсен йышне кĕртнĕ, тепринче усал-тĕсел ушкăнне янă. Çав хăватсен пĕлтерĕшĕ майĕпен çухалса пынăран çапла пулса тухнă.*

*Усал-тĕселсен ушкăнĕн хăйĕн темиçе рет. Пĕри —* ***ахăр усалсен*** *йышĕ: Алпастă, Арçури, Аçтаха, Вĕриçĕлен, Вупăр, Вупкăн, Вутăш, Юхха. Çынна тапăнмаççĕ хăйсем, анчах майлă самант пуласса кĕтсех тăраççĕ. Саманчĕ сиксе тухсан инкек-синкек кăтартма та, тăрăхласа-кулса илме те пултараççĕ. Вĕсем инкексене пула усала тухнă, хăйсем пек нушаллă этемрен кулма сăлтавĕ те сахал, çавăнпа астарни, алхасни, хăратни тата ытти пĕтĕм хăтланкаларăшĕ апăршалла пулса пырать. Ахальтен мар ку ретри усалсем çинчен кулăшла юмах-халап нумай.*

*Усал-тĕсел йышĕнчи тепĕр рет —* ***чĕмере тĕселсен*** *йышĕ. Кусем этеме пĕр ырă та тумаççĕ. Чир-чĕр яраççĕ, шăнса е вĕрипе пăсăласса, тулашсахирĕлсе каясса кĕтсех тăраççĕ. Ку йышши усал-тĕсел тем чухлех: Аншăрт, Вушни, Ĕревĕш, Кăрмасан, Мур, Шатăн, Типтири, Тытамак, Хытăм, Чăкарми, Чĕмере, Кĕлилен, Пăсăркка, Юлавăш, Ӳлемер. Кашни тĕсел пайăр та, пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшпе те çӳренĕ. Усал-тĕсел халапĕсем ача-пăчана хытах хăратса тăнă.*

*Ырăсемпе хаярсен, усалсемпе тĕселсен шутне Н.И.Ашмарин профессор сăмахсарĕ тăрăхах малалла тăсма пулать. Унтах пĕрле çӳрекен, пӳрекен, выртакан, тытакан, кӳрекен, сыхлакан тата ытти тĕрлĕ ĕç тăвакан нишлĕ хăватсене кăтартса хăварнă.*

*Халăх асĕнче авалхи ырă-хаяр сăнарĕсемпе ячĕсем пĕр пекех упранса юлман. Пĕрисем манăçа юлнă, теприсем çинчен халĕ те каласа параççĕ. Арçури, Вĕриçĕлен, Вупăр, Усал, Вутăш, Эсрел çинчен авалхи халапсенчен пайтах юмах пулса кайнă.*

*Ятсăр ырă-усала вĕсен ĕçне е япалине кура асăнаççĕ: курка паран, пылак кӳрен, пил пӳрен, перекет тытан, шурта віыртан теççĕ. Кӳлĕ амăшĕ, шыв вăкăрĕ, çил лупанĕ, çĕр чĕмери йышши ятсем калмаксенче теçеткипе. Вĕсен хăйсен пĕлтерĕшĕ, вырăнĕ, хăвачĕ пулнă.*

*Чăваш ĕненĕвĕнче çынна итлемен кĕçĕн хăват çук. Çӳлти Турра та итлеттернĕ этем. Мелне кăна пĕлмелле пулнă: халăхпа Турра юрăхлă пурăнмалла, вăхăтра ĕçлесе вăхăтра канмалла. Хăйне сăвап кӳмен ырри-усалне чăваш çырмана кăларса пăрахнă, вара çĕнĕ шульăша чĕнсе илнĕ.*

*Çынпа хуçалăх таврашĕнче кирек хăш енĕпе те усал-тĕселе Леш тĕнчере виçелетсе тăма пĕлекен «ертӳçĕсем» пур. Ытларах чухне вĕсене «пуç» тенĕ: ямах пуçĕ, масар пуçĕ, карта пуçĕ, эртел пуçĕ. Уйрăм вырăн, пурлăх, япалан «пуçĕ» хайлалла шухăшлавра «хуçи» пулса тăнă: Арçури — вăрман хуçи, Вутăш — шыв хуçи, Пихампар — Амаксар киремечĕн хуçи, Чура паттăр — Атăл вирĕсĕн хуçи, Элĕк паттăр — Сурăм киремечĕн хуçи...*

*Усал-тĕсел шульăшне-чĕмне пăскăнчăксемпе — тухатмăш, суруçă, сулуçă, тĕшмĕшçĕсемпе çыхăнтараççĕ. Вĕсен хăйсен йăла вырăнĕсем пур. Çав вырăнсене эсреметсем е хаяр киреметсем теççĕ. Пăскăнçăсем хăйсен вăрттăнлăхне никама та каламан. Вилес умĕн çеç шаннă ачисене е мăнукĕсене вĕрентсе хăварнă.*

*Эсремет йĕркисем шаманлăха аса илтереççĕ. Чăвашсен вăл енĕ хут çине туллин ӳкерĕнмесĕрех пĕтсе пынă.*

## Хаяр турăсем. Эсрел. Пир. Сехмет

*Аваллăх халапĕсенче пуринчен те ытларах Эсрел — вилĕм турри, чун илекен хаяр анлă вырăн тупнă. Вăл Леш тĕнчере те, Çут тĕнчере те çӳрет; Аслă Турăпа, Шуйттанпа, Хăяматпа çыхăну тытать. Унăн ĕçĕ — турă çырнине пурнăçласси, вăхăчĕ е ячĕ тухнă çынна Леш тĕнчене ярасси.*

*Эсрел сăнарĕ ӳнер ăстисене тĕрлĕрен курăнать. Вĕсем ăна çавапа, ӳтсĕр-тирсĕр кĕлетке туса ӳкереççĕ, шăлне шаккаттараççĕ. Чăваш халапĕсенче Эсрел армак-чармак пысăк, çăмламас, сухалĕ-çӳçĕ сапаланчăк, сăн-пичĕ таса мар. Тĕттĕмре пурăнать, çĕр çине каçхине тухать. Вăрçă-харçă туррипе Сехметпе, тамăк пуçĕпе Шуйттанпа, Хурлăх туррипе, Пирпе вăл çапăçу хирне çитме васкать. Кунта вĕсен ĕçĕ вăй хумасăрах пулса пырать. Вĕсем уншăн савăнаççĕ.*

*Эсреле, Сехмете, Типшара, Пире, Мăртăка тата ытти хаяр турăсене чăваш пуççапмасть, парне памасть.*

## Эсрел

### 784

Çĕр питĕнче пурăнакан халăха тамăка илсе каякан Турă — Шуйттанăн пулăшаканĕ. Ăна çынсем улталасшăн пулсан та, хăйĕн пурнăç çиппи татăлсан, çĕр çинче юлнисем пулман тет.

### 785

Минчетсĕр* пурăннипе çуралнă ача вилсен Эсрел пулать.

* Венчетсĕр.

## 786

Эсрел — усал Турă, чун илекен. Эсрел вăл питĕ пысăк. Вăл çынсенне чунне илме çӳрет. Çур çĕр çитсен Эсрел пӳрт тăррине хăпарса шавланă. Пĕтĕм пӳрт тăрри чĕтренсе тăнă. Çур çĕр çитсен çынсем Эсрелтен хăранă.

## 787

Эсрел вăл питĕ пысăк. Вăл Вĕреçĕлен мĕнле пулнă, çавăн пекех пулать.

Эсрел çынсен чунне илме çӳрет: пӳрт кĕтессине пырса тăрать, çур çĕр çитиччен этем чунне илеймесен вăл хăйĕн вăрăм чăпăрккипе пӳрт тăррине пĕтĕм вайран çапса хăварать, вара пĕтĕм пӳрт кисренсе каять.

## 788

Чăвашсем Эсрелĕ, канавал пек, çын чунне илсе çӳрет теççĕ. Вăл ептĕрипе*, мăлатуксемпе чирлĕ çын патне килсе кĕрет тет те сакайĕнчен ептĕрипе çын ӳтне шăтарса ун чунне илет теççĕ.

Пӳртри япаласене: тумтирсене, савăтсене, çуртра тыткалакан пур япаласене — тула кăлараççĕ: Эсрелĕ чирлĕ çын шăмми сыпăкĕсене каснă чухне ун юнĕ япаласем çине сирпĕнсе ан юлтăр теççĕ.

## 789

Эсрел çын ĕмĕрĕсене илсе çӳрет тет. Кам унăн çулĕ çинче тĕл пулать, çавна вĕлерет тет. Çакна пĕр пуян тĕл пулнă тет. Вăл хăраса ӳкнĕ тет, вилесси килменнипе хăйĕн ĕмĕрне мулпа улăштарнă тет, ку ĕнтĕ вĕлермелле мар тунăшăн Эсреле ылтăнĕсене, выльăххисене йăлт панă тет. Арăмне те шеллесе тăман тет çак пуян. Анчах Эсрел ăна пурпĕрех вĕлернĕ тет. Эсрел ăна хăй çинчен никама та калама хушман тет. Ку калать тет. Çавăншăн вĕлернĕ ĕнтĕ. Эсреле курни çинчен никама та калама юрамасть тет. Эп хам курман, пĕлмесп. Уншăн пурте пĕр пек тет, чухăнни те, пуянни те, пурне те пĕр тикĕс вĕлерет тет, пĕрне те шеллемест тет.

## 790

Çын вилнĕ чухне кăмака çинчен е тĕпел кукринчен сӳсмен витĕр пăхсан çын чунне илме килнĕ Эсрел курăнать тет. Анчах сӳсмен витĕр пăхаканни çав вилнĕ çын хыççăнах вилет тет.

Эсрел пуянпа чухăна пăхмасть, пурне те пĕр тикĕс пусса каять. Çавăншăн ăна ырламалла кăна. Пуяна, чухăна пăхсан пуяннисем чухăнсен шучĕпе ик-виç çын ĕмри те пурăнĕç.

## 791

Эсрелĕ вăл çыннăн чунне илет теççĕ, Эсрелĕн куçĕ ĕнси çинче теççĕ. Ăна çын чунне илме килнине нумайăшĕ кураççĕ.

---

* Аптăри.

## 792

Эсрелĕ питĕ пысăк тет. Вăл çынсен чунне илме çӳрет. Çур çĕрччен Эсрел этем чунне илме тăрăшать. Илеймесен вара питĕ тарăхать.

## 793

Эсреллĕ хори, шорри полать тет, хори питрех осал тет. Çын вилнĕ чохне касма Эсреллĕ пырать теççĕ. Ахаль çӳренĕ чохне Эсреллĕ мĕнле япала çомĕнче пырать, çавăн çӳллĕш полса çӳрет теççĕ.

## 794

Эсрел — сивлек сăнлă Турă, вăл никама та килĕштермест. Унăн килçурчĕ те хуп-хура. Вăл питĕ хăрушă пит-куçлă. Ăна ытти турăсем кăмăллаçах каймаççĕ тет. Кашни виллине вăл шăпа кĕнекинчен çырса илет те кaçпа хăйĕн ĕçне тума тухса каять тет. Ăна çынсем питĕ юратмаççĕ, хăраççĕ.

Эсрел никама та уйăрса илме памасть: ватти-вĕттине те, пуяннине те, чухăннине те хăй патне илет тет.

## 795

Тата Эсрел çинчен çапла калаççĕ. Вăл чуна илсе каять тет. Çылăхсăра çивĕч çавапа касса вĕлерет тет, çылăхлă çынна мăка çавапа вĕлерет тет. Çавăнпа çылăхли питĕ кăçкăрса, турткаланса вилет теççĕ. Çын чунне вара вăл арча ăшне хупса илсе каять тет.

## 796

Эсрелĕ çыннăн чун тухнă чух пусма килет теççĕ, çыннăн çылăхĕ нумай пулсан вара çынна Эсрелĕ нушта кăтартса пусать теççĕ, çылăх сахал пулсан çăмăлтараххăн пусать теççĕ. Эсрелĕ пусмасăр çын вилмест теççĕ.

## 797

Эсрел этем чунне илме килет. Вăл çавапа çӳрет. Этем вилнĕ чух пуçĕ вĕçне стаканпа шыв лартаç. Эсрел этем чунне илсе кайнă чух шыв хумханать.

Хунеме карчăк вилме аптранă. Тĕлĕрсе выртнă вăхăтра пӳрте виççĕн кĕрсе тăчĕç. Хăйсем хура калпаксемпе, хыçалалла çавăрса тăхăннă. Хăйсем мачча каштинчен иртмеççĕ. Пĕри хунеме патне пычĕ те ăна сăнăпа чикме пуçларĕ. Хунеме ман виçĕ хутчен ах! терĕ. Çав çын хунемене виçĕ хутчен чикрĕ сăнăпа. Унтан вара вăл нумай пурăнаймарĕ, вилсе выртрĕ.

## 798

Кашнăй масарта Эсрел пур теççĕ, чуна çавă илсе каять тет, арча ăшне хупса каять теççĕ. Шăнăрĕпе шăмми анчах тет вăл Эсрелĕн. Çавапа касать тет çын ĕнсине вĕлернĕ чухне. Масар çĕнĕрен тусан кам малтан вилет, çавă масар пуçлăхĕ пулать тет. Тата кашнăй масарта масар алтанĕ пур тет. Çавă пуçласа алтать тет, вара ялти алтан алтать тет. Тата çын вилес пул-

сан вилнĕ çынсем пурте килеççĕ тет, уна вил туй теççĕ. Çынна тĕл пулсан ахаль ирттермеççĕ, мĕн те пулсан сиен-айăп тăваççĕ. Масар пуçлăх илсе çӳрет теççĕ вĕсене. Вил пытарсан питĕ хытă тараççĕ урапа çине ларса.

## 799

Пĕр хĕрарăм каçхине тăванĕсем патне кайма тухнă. Ун çулĕ урлă шурă, вăрăм çын каçса кайнă. Çак çын пĕр çынсем патне пырса пӳрт кĕтессинчен виçĕ хут çапнă тет. Кунта пĕр старик пĕчченех пурăннă тет. Тепĕр кунне ялта çак старик вилнĕ пирки хыпар сарăлать тет. Ял çыннисем çак старик шурă, вăрăм çын ун пӳртне çапнă пирки вилнĕ тесе шутлаççĕ тет.

## 800

Малтан çынсем пит нумай вилнĕ тет. Пĕрмаях питĕ нумай ват çынсем виле-виле пынă тет. Вара çынсем Эсреле тытнă та пĕр шăтăка кайса чикнĕ. Хайхи питĕ çын нумайланса кайрĕ тет. Ĕрчеççĕ тет кăткăсем пек, пит нумай тет ват çынсем.

Хай Эсреле шыраççĕ, шыраççĕ — ниçта та çук.

Халăхсем пĕррехинче пуху пухаççĕ тет те пурне те чĕнеççĕ тет. Пĕтĕм чĕр чунсене, кайăк-кĕшĕкне — пурне те чĕнчĕç тет. Çыннисене те пурне те чĕнчĕç тет.

Эсрел ăçтине никам та пĕлмест тет. Хай алăк урлă пĕр Чĕрĕп каçать тет. Хăй хырăмне аран-аран каçарчĕ тет алăк урлă.

Пурте кулса ячĕç тет.

— Чĕрĕпрен ыйтас, — теççĕ тет пурте. — Калатăр! — тесе кăшкăраççĕ тет кăсем.

— Эп Эсрел ăçтине пĕлмеп. Каçхине пытарнă пулсан Уйăх пĕлет, ирпе пулсан Хĕвел пĕлет, — терĕ тет Чĕрĕп.

Хĕвелтен ыйтрĕç — пĕлмест тет. «Курман», — тесе каларĕ тет. Уйăхран ыйтрĕç тет те, пĕлетĕп тесе каларĕ тет ку.

Вара пурте пĕрле кайса Эсреле чавса кăларчĕç тет те, леш пĕтĕм ват çынсене илсе тухса кайрĕ тет. Çапла çын сахалланса юлчĕ тет вара çĕр çинче.

## 801

Ĕлĕк ватă çынсем çех вилнĕ тет. Эсрел куçа курăнсах çӳренĕ тет. Çынсен вилесси килмен тет. Эсреле илĕртсе тимĕр тупăка вырттарнă тет те питĕрсе илнĕ тет. Эсрелĕн юлташĕ пулнă тет. «Çапса çĕмĕр çак тупăка», — тесе калать тет Эсрелĕ юлташне. Юлташĕ тимĕр тупăка çапать тет, çапмассерен тимĕр кăшăл пулса тăрать тет тупăк тавра. Халăх Эсреле йӳçлĕхе кайса пытарать тет. Хайхи никам та вилмест тет. Ваттисем те çаплах асапланса пурăнаççĕ тет. Тĕнче шăршланса кайрĕ тет. Турăпа Пӳлĕх Эсреле шырама тухнă тет. «Ăçта вăл, — тесе калаççĕ тет. — Ăçта пытартăр?» — тесе ыйтаççĕ тет. Халăх каламасть тет. Вара çапах калаттарнă тет. Кăларнă тет чавса Эсреле. Начарланса кайнă тет. «Чут вилеттĕм», — тесе калать тет. Турăпа Пӳлĕх каланă тет: «Ӳлĕмрен ватти-вĕттине ан тирке, куçа курăнса ан çӳре», — тесе каланă тет. Çавăнтан пурте виле пуçланă тет вара, вилĕм куçа курăнми пулнă тет.

## 802

Эсреле çын вилнĕ чух чуна кăларакан теççĕ. Çын вилес чух ĕнси çемçелет, çавна Эсрел касрĕ теççĕ.

Эсрел çинчен халап калаççĕ. Вăл пĕр çынпа пит тӳрĕ пурăннă пулать. Ку çынна вилме çитсен чунне кăларма пырать пулать. Эсрел калать: «Манăн санăн чунна кăлармалла», — тет. Çынни калать: «Эсĕ мана тупăк тума ирĕк пар», — тет. Эсрел: «Ту», — тет. Хай çын тăвать. Туса пĕтерсен Эсреле калать: «Аван пулчи?» — тет. «Аван», — тет. «Аван пулсан выртса пăх-ха», — тет. Эсрел тупăка кĕрсе выртать. Хай çын Эсрел тупăка кĕрсен питĕрсе хурать. Питĕрсе хурсан Эсреле шыва кайса ярать. Çавăнтан кайран çын пĕрре те вилмен тет. Çынсем питĕ нумайланнă. Турă вара Эсреле шырама хушать. Эсреле Хĕвел тупнă тет. Эсрелĕн пĕр ӳчĕ те юлман пулать. Эсрел тупăкра питĕ шăрăшланнă пулать. Çав Эсрел тупăкĕнчен тухнă шăрăш пурте чир пулнă пулать. Унччен ĕлĕк чир пулман пулать. Эсрел халĕ улталĕç тесе курăнса çӳремест пулать.

## 803

Эсрейлĕпе Эскемер пит тӳрĕ пурăннă тет. Эскемер хайне вилсен выртма тимĕр тупăк тутарнă тет; ăна Эсрейли курнă тет те: «Ку мĕскер санăн?» — тесе ыйтать тет. Эскемерĕ: «Вилсен хама выртма тупăк», — тесе калать тет. Эсрейли каларĕ тет: «Эпĕ сан чунна илме çав вăхăтра килĕп», — терĕ тет. Эскемер: «Иксĕмĕр çак тĕрлĕ пурăнса та эсĕ манăн чуна илетне? Тĕнчере çын нумай, мана каçар», — тесе тилмĕрет тет. Эсрейли: «Каçарма юрамасть», — тесе калать тет.

Пĕрре Эскемер тупăк çине выртакаласа пăхса тăрать тет. Çав вăхăтра Эсрейли пычĕ тет. Эскемерĕ Эсрейлине калать тет: «Манăн тупăк хама ытла чухах, сана юрать-и? Выртса пăх-ха», — терĕ тет. Эсрейли кĕрсе выртрĕ тет. Эскемерĕ Эсрейлине тимĕр тупăка питĕрет илет тет те хăй хыçне кӳлле каять ярать тет. Эсрейлĕ çухалчĕ тет. Вăтăр çул иртнĕ пулĕ тет, пĕр çын та вилекен çук тет. Çынсем ватăлса çăпатисене кутăн сыра пуçларĕç тет. Турă Эсрейле шыра пуçларĕ тет: пĕтĕм çут çанталăкри вĕçен кайăка, тискер кайăка, шыври пулăсене пуçтарса пуриччен те: «Эсрейле курман-и?» — тесе ыйтать тет. Пурте курман тесе калаççĕ тет. Çавăнти Эскемер хыçĕнчи кӳлĕрен çеç пĕр пулă килмен тесе калаççĕ тет. Турă çав пулла чĕнтерсе пыртарать тет те: «Эсĕ мĕншĕн килместĕн?» — тесе ыйтать тет. Пулли: «Манăн куç курмас, çавăнпа килейместĕп», — тесе калать тет. Турă: «Эсĕ епле суккăр пултăн?» — тесе ыйтать тет. «Пĕр çĕрхине уйăх çути çап-çутăччĕ; çав çĕрхине выляма тухрăм та пĕр пысăк темĕскерле япала куçа перĕнсе суккăр турĕ», — терĕ тет. Мĕскер япала вăл? Пырса пăхаççĕ тет те, тимĕр тупăкра Эсрейлĕ, кăшт çех сывлăшĕ пур тет. Турă Эсрейле вĕрсе чĕртрĕ тет. Çавăнтан вара Турă Эсрейле çынна курăнмалла мар турĕ тет.

## 804

Чирлĕ çын вилме тытăнсассăн, çемйисем пур ăратнисене те, кӳршисене те чĕнсе пуçтараççĕ. Пӳртри япаласене: тумтирсене, савăт-сапасене, çуртра тыткалакан пур япаласене — тула кăлараççĕ. Япаласене акă мĕншĕн

тула кăлараççĕ: Эсрелĕ чирлĕ çын шăммин сыпăкĕсене каснă чухне ун юнĕ япаласем çине сирпĕнсе ан юлтăр теççĕ. Вилнĕ çынна Эсрел çавапа ĕнсе шăммисене, ытти шăмă сыпăкĕсене касать те, çын вара лепсĕрех кайса вилет. Эсреле час-часах куракан та пулнă. Пĕр çын çĕрле тухнă та тула чут хăраса вилсе кайман: пăлтăр умĕнче, пӳрт кĕтесĕнче, пӳрт çӳллĕш çын мĕлки тăрать тет. Шăмă кăна тет хăй, аллинче çава тет. Ку çын вара кăшкăрса янă тет: «Кунта мар, кунта мар!» — тесе. Вара Эсрелĕ çаврăнса тухса кайрĕ тет ăрамалла. Çав кас, чăнах та, вĕсен кӳршинче пĕр çын вилнĕ тет. Эсрел йăнăшпа чирлĕ çын патне пырас вырăнне ун кӳршине пынă тет.

Тата чашкăпа чӳрече çине таса шыв лартаççĕ. Çын чунĕ тухсанах çав чашкăри шыва кĕрсе чӳхенсе-çăвăнса тухать тет. Вăл шыва кайран вилнĕ çынна çунă çĕре çын ӳчĕ çине яраççĕ.

## 805

Вăл çыннăн вилĕм çитсен пусма пырать тет. Пĕрре çапла виççĕн пĕр-тăван чирлĕ выртнă тет. Вĕсен ашшĕ тата хытăрах чирлесе выртнă тет. Хăйсем ватах пулман тет, ашшĕ пит ватă пулнă тет. Ку старикĕн аслă ывăлĕ тĕлĕрнĕ пек выртнă тет. Выртнă çĕрте вăл курнă тет: тăваттăн пĕр пекскерсем вăрăм çĕçĕсемпе пычĕç тет. Çĕççисене кĕсйине чикнĕ тет. Пурте пĕрин патне пыраççĕ тет те вăхăт çитмен тесе калле çаврăнса каяççĕ тет. Теприн патне пыраççĕ тет те каллех çаврăнса каяççĕ тет. Вара ватти патне пычĕç тет те: «Кунăн вăхăт çитнĕ», — терĕç тет. Çавăнтан кайран нумай та пурăнмарĕ тет, тепĕр эрнерен кăсен ватă ашшĕ вилчĕ тет.

## 806

Пĕр старик ватă пулнă тет те вăрмантан вутă йăтса килнĕ чух питĕ ывăннипе тарăхса: «Ах анчах, вилĕттĕмччĕ, вилĕм çук», — тесе калать тет. Çав вăхăтрах Эсрелĕ çитсе тăчĕ тет. Старик ăна курсан калать тет: «Ывăннипе анчах каларăм-ха, вилес килмест-ха, каях хăв çулупах», — терĕ тет.

## 807

Пĕр карчăкпа старик пурăннă тет, ача-пăча пулман тет. Старикки те çĕре кĕчĕ тет, карчăк çаплах пурăнать тет. Вăл та вилĕм кĕтме пуçларĕ тет.

Пĕррехинче, çур çĕр тĕлĕнче, вăранса каять тет карчăк, урай варĕнче шап-шурă сурăх таки тăнине курать тет.

— Э-э, ку хамăн çухалнă така таврăннă-иç, витене тухса хупам-ха, — терĕ тет те такана тытма хăтланать тет.

Таки тек аяккалла каять тет. Карчăк çаплах тытма тăрать тет, таки тата тарать тет. Çапла така хыççăн утсан-утсан карчăк:

— Ку ман вилĕм, мана илме килнĕ, Турă çапла хушнă пуль, — тесе така хыççăн пырать тет.

Çапла ялтан аякках кайрĕç тет, таки çутăлас умĕн хăвалăха кĕрсе кайрĕ тет. Карчăк та хăвалăхран таврăнмарĕ тет. Вăл вилнĕ вырăна халĕ те Таканкахви теççĕ.

## 808

Пĕр çыннăн ачи пит хытă таса мар* выртнă пулнă. Выртсан-выртсан ача вилсе кайнă. Унтан тепĕр ачи те таса мар пулнă. Çанта тепĕр ялтан çын пырать. Ку пит васкаса утать тет. Пырсан-пырсан вăл пĕр çынна хăваласа çитнĕ те ыйтать: «Эсĕ мĕнле çын, ăçта каятăн?» — тет. Лешĕ калать: «Эпĕ çав яла каятăп, унта пĕр çын ачи таса мар пулнă та, çавна вĕлерме каятăп», — тет. Каллех çав çынтан ыйтать: «Эсĕ мĕнле çын?» — тет. «Эпĕ Эсрел», — тет. Ку çын Эсрелтен иртсе каять те часрах сыв мар ачаллă пÿрте çитсе хуçине калать: «Санăн ачу таса мар выртать-и-ха?» — тет. Кил хуçи калать: «Таса мар выртать», — тет. Ку çын ларать, ларать, сыв мар ача сонас тумасть. Кайран ачана тапак шăршлаттарать те, ачи сонаслать. Çын: «Сульăха**», — тет. Çапла каласанах ачи чĕрĕле пуçларĕ тет; вилсе кая пуçланăскер чиперех чĕрĕлет. Хай çын калать кил хуçине: «Эсĕ ачуна сонас пулсан сульăха тесе каламасăр чиперех вĕлереттĕнччĕ», — тесе хăварать.

## 809

Ĕлĕк пĕр ялта Чунилли пулнă тет. Пĕр старик суха туса килнĕ хыççăн пускилсемпе эрех ĕçнĕ. Эрех ĕçсе ларнă вăхăтра ун патне Чунилли пынă. Чунилли тепĕр пÿлĕмне кĕрсе кайнă. Хайхи Чунилли çав старикран ыйтнă: «Соха хатĕр-и?» Старик: «Ман икĕ кун суха тумалли юлнă», — тенĕ. Чунилли каланă: «Çаксем мана ĕçмелли-и?» — тесе ыйтнă. «Ĕçмелли», — тенĕ старик. Çав старик Чуниллине ĕçтернĕ те, Чунилли ÿсĕрĕлсе кайнă. Çав Чунилли çÿлелле сикнĕ те пăрça пĕрчи пулса урайне шапăр тăкăннă. Çав старик каланă: «Çип пек çĕлен пулса кĕленче ăшне кĕрейретĕн-и?» — тенĕ. Чунилли кĕленче ăшне çĕлен пулса кĕрсе кайнă. Çав старик кĕленче пăккине пăкăласа лартнă. Чунилли: «Пошалстă, кăлар! — тесе кăшкăрнă, — сана çĕр çул пурăнма парăп», — тенĕ.

## 810

Улăп паттăр çын пулнă. Вăл пăрăм сăнчăрĕнчен те çип туса çăмха тума пултарнă.

Пĕрре Улăппа Эсрелĕ тĕл пулнă тет. Çав Эсрелĕ Улăп чунне кăларасшăн пулнă. Улăп кукамăшĕ Çĕр амăшĕ пулнă та — Улăп чĕрине вăшвăш кăларайман.

Эсрелĕ Улăпа çапла каланă:

— Кам кама ăсталăхра çĕнтерет, çав теприн чунне илет, — тенĕ.

Улăп килĕшрĕ тет Эсрелпе. Эсрелĕ калать тет:

— Çак сăнчăрпа эпĕ çырма-çатра тăватăп, шывпа тултаратăп. Эсĕ çав шывсене çак сăнчăрпа талăк хушшинче Çавала йăтса куçаратăн. Куçарсан — сана чуна паратăп, Чăвашран каятăп, куçараймасан — чуну ман пулать, юрать-и?

— Юрать, — тет Улăп.

Эсрелĕ пуçларĕ тет сăнчăртан çитмĕл те çичĕ татăк тума. Сăнчăр татăкне ăçта перет, çавăнта çырма выртать, çырминче чăп тулли шыв. Эсрелĕ

* Сывă мар, чирлĕ.

** Сывлăха.

ăшĕнче шутлать тет: «Вăл сăнчăрпа çырмаран шыва Çавала куçарас çук, чунĕ манăн пулать», — тет. Савăннипе чут анчах ташласа ямасть тет.

Улăп та пăрăм сăнчăрне илет те тавай сăнчăртан турта-турта çип тăвать те çăмхалать.

— Çак çăмха Эсрел çырми пуçĕсене татса Çавала тухтăр! — терĕ тет кăшкăрса Улăп. Çавăнтах шăппăн: «Кукамай, пулăш мана, мăнукна!» — терĕ тет. Улăп çăмхана пĕррех вăркăнтарать Çавал еннелле.

Тимĕр çăмха Эсрел çырми пуçĕсене татса Çавала çитичченех чăнах та тăсăлса выртрĕ тет. Ара, сăнчăра ункăсенчен тăваççĕ-çке, çавăнпа пуль юхан шыва Ункă теççĕ. Улăп çăмхине пирĕн ял вырăнĕнчен пенĕ тет.

## 811

Пĕр çын вилĕмрен питĕ хăранă. Епле те пулсан вилĕмрен хăтăласшăн пулнă. Шухăшласан-шухăшласан вăл акă мĕн тăвам тенĕ: пыйтă ӳстерес те, тирне сĕвсе Эсрел килсен çавна кăтартас та çак тире палласан вĕлер, палламасан ан вĕлер тийес. Тен, паллаймĕ те, вилĕмрен хăтăлăп!

Чăнахах та хайхи пыйтă тытнă та çитерсе ӳстере пуçланă. Пыйтă ӳснĕ. Пĕр тăват-пилĕк çултан кăвакал пек пулнă. Вара çав çын пыйта пуснă та тирне сĕвсе çакса хунă.

Пăртак пурăнсан Эсрел çавине тăратса çак çынна вĕлерме пырать. Пӳрте кĕрет те çын умне тăрса калать: «Ĕнтĕ санăн вилме вăхăт çитрĕ, эпĕ сана çавапа касса вĕлеретĕп», — тет. Çын хайхи пыйтă тирне кăтартать те калать: «Чим-ха, çак мĕн тирне пĕл те вара вĕлер», — тесе. Эсрел çавăркаласа пăхрĕ те паллаймарĕ, вара çавине усса тухса карĕ тет.

Пурăнсан-пурăнсан çав кӳрĕшрех тепĕр çыннăн вилĕмĕ çите пуçланă. Эсрел çавине тăратса пырать кун патне. Çынни Эсреле калать: «Мĕншĕн мана вĕлересшĕн-ха эсĕ? Манран ваттисем те пурăнаççĕ, эсĕ вĕсене вĕлерха, вара мана та вĕлерĕн», — тет. Эсрел калать: «Эпĕ ун патне пытăм та, вăл мана пĕр темĕскер тирĕ кăтартрĕ; çав тире палласан тин вĕлер терĕ. Эпĕ паллаймарăм та вĕлерейместĕм».

— Çав пыйтă тирне те паллаймарăн-и? — тет çынни.

Эсрел хыпаланса тухса каять хайхи çынна вĕлерме. Çын каллех пыйтă тирне кăтартса пăхнă, анчах Эсрелĕ пыйтă тирне палланă та çынна вĕлернĕ. Унтан кӳрĕш çыннине те кайса вĕлернĕ.

Çапла ĕнтĕ, вилĕмрен ниепле те хăтăлмалла мар пулĕ çав.

## Сехметпе Пир

*Сехмет (Сехре), Пир (Пери, Вери) турăсем иккĕшĕ те хаяр турăсем шутланаççĕ. Сехмет çынсене, кил-йыша, ял-йыша, халăхсене пĕр-пĕринпе вăрçтарать. Вăл вутпуççипе перет те пушар, вут, вăрçă-харçă тухса каять. Ăна Вутамапа Вутаçа пĕрле сӳнтерме пултараççĕ.*

*Пир турă малтанах алă ăстисен хӳтĕлевçи пулнă. Анчах вăрман касакансем ăна йывăçпа çапăнтарса амантнă та, вăл пархатарсăр çынсене ура хума пуçланă. Тутарстанпа Пушкăртстан чăвашĕсем Пир турра Пери е Вери теççĕ. Г.И.Комиссаров тĕпчевçĕ ку хаяра «Ийе йышши сывлăшах пулнă*

*пулмалла» тесе çырнă. Ячĕсене перс (фарси) чĕлхинчен е классика мифологийĕнчен килнĕ сăмахсем тесе шутлаççĕ: «пери» — «управçă хĕр», ырă шульăш пĕлтерĕшлĕ, «сехмет» — Египет мифологийĕнче «хăватлă» тенине тата çунтаракан хĕвеле пĕлтерет.*

*Ахăртнех, ку сăмахсен урăхла ăнлантару та пулма пултарать, мĕншĕн тесен чăваш хайлалăхне «пир», «пир-авăр», «вĕри», «вĕриçĕлен» сăмахсем кĕрсе юлнă.*

## Сехмет

### 812

Сехмет вăл типшар кăтартать. Сехмет вăл вăрçă кăларать. Сехмет вăл Турă мар, Турă пулнă та хаяра юлнă. Вĕсем Киремет, Эсремет, Сехмет тата такамсем аслă Турра хирĕç хăтланнă. Турă вĕсене хăваласа янă. Киремечĕ Турăран каçару ыйтнă, ăна каçарнă, вăл çынсене пулăшать. Эсремечĕ çырмана тарса пытаннă. Сехмечĕ çапкаланса çӳрет çынсене вăрçтарса.

### 813

Хаяр сехре Эсрелпе çывăх. Хаяр — вăрçă-харçă турри. Хаяр никама та юратмасть. Ытти турăсемпе вăл сайра тĕл пулать. Эсрелпе çеç пĕр чĕлхе тупкаланă.

Хаяр питĕ хăрушă сăн-питлĕ, уксах ураллă. Вăл кăмакара вут иăтратса ларать, кăвар ӳксен — тĕнчере вăрçă пуçланать.

Хаяр никама та шеллемест. Ним айăпсăр чĕр чун унтан хур курнă. Çĕр çине вăл час-часах вăрçă кăварĕ сирпĕтнĕ.

### 814

Çапах та турăсен тĕнчинче Ырă турă кăна мар, Усал, Хаяр турă пулнă. Вăл никама та юратман. Хаяр турă авланма шут тытнă. Танкăрăн хĕрне юратнă. Танкăр хĕрне качча паман. Хаяр турă çĕр çине кăварсем утса тăнă. Кăвар ӳкнĕ вырăнта яланах çапăçусем пынă. Эсрелпе Усал çакна курса питĕ хĕпĕртенĕ. Вĕсем вĕт-ха питĕ усал ĕç тунă.

## Пир

### 815

Пир турă Пирчура ашшĕ пулнă. Пирчура вăл тăшманпа çапăçса вилнĕ. Ăна çӳллĕ сăрт çине пытарнă. Сăртне халĕ Чура паттăр сăрчĕ теççĕ.

### 816

Пир пуринчен ытла усал Турă пулнă, вăл вăрманта пурăнать тет, çынна ерсессĕн çав çын чӳк тусан та хăтăлайман. Сасартăк вилнĕ çынна «Пир çыпăçса вилнĕ» теççĕ.

817

Пĕр Элекçей ятлă чăваш хăйĕн хĕр ачипе вăрмана кайнă. Вăрманта вăл тилĕ курнă. Çав тилĕ хыççăн Элекçейпе унăн хĕрĕ сăнаса утнă. Тилĕ пынă-пынă та пĕр шăтăка кĕрсе кайнă. Чăваш хăй хĕрне çав шăтăка тилĕ хыççăн кĕме хушнă. Хĕр ача шăтăка кĕнĕ те пăртак тăрсан тухнă. Анчах вăл ăсран кайнă, ухмаха ернĕ. Ашшĕ: «Тилĕ пур-и шăтăкра?» — тесе ыйтсан вăл каланă: «Унта çынсем нумай», — тенĕ. Кайран юмăç каланă: «Тилĕ вăл чăн тилĕ пулман. Пери пулнă, шăтăкĕнче перисем пурăннă», — тенĕ.

## Ахăр усал йышĕ: Алпастă, Арçури, Аçтаха, Вĕреçĕлен, Вупăр, Вупкăн, Вутăш, Усал

*Ахăр усалсем малтан ырă хăватсем пулнă. Вĕсем Авалхи Иран мифологийĕнче ырă пĕлтерĕшпех тăрса юлнă. Чăваш хайлалăхĕнче ахăрсем çиллес те сиенлĕ вăйсене тухса кайнă, усал пулса тăнă. Ун пек хирĕçленӳ татах та пур: ытти халăхсен «алпасти» шыври çиллес вăй, чăвашсен вара шывпа çыхăнман. «Шыври» тата «Путăш» вырăнне Вутăш пулса кайнă.*

*Усал нумай халапра пайăр ятпа çӳрет. Унтанах пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пулса тухнă. Тĕсел те çавах. Малтан «тĕсел» пĕчĕк сиене пĕлтернĕ, кайран пĕтĕм чир-чĕре, инкек-синкеке палăрта пуçланă.*

*Сăмахлăх пуххине усал вăйсене алфавит йĕркипе вырнаçтарнă.*

*Арçури халапсенче тĕрлĕ ятлă — Упăте, Маймăл е вирьялсем патĕнче — Опăçан, Укăте, Екĕте. Арçурие ытларах чухне упăте сăнарлă кăтартнă. Кунта «арçури» сăмах пĕлтерĕшне каласа хăвармалла. Халиччен çырнисенче ăна çурма арçын пек ăнлантарнă. Ку тĕрĕс мар. Арçури вилнĕ çын чунĕ вырăн тупаймасăр çапкаланса çӳресен пулать. Çавăнпа кунта «чун» сăмах тĕп вырăнта. Авалхи тĕрĕк чĕлхинче «сюри» сăмах «чун» тенине пĕлтерет. «Ар» вара — «çын»,«арçын» тени. Эппин, арçури — «çын чунĕ» пĕлтерĕшлĕ ăнлав.*

*Алпастă, Аçтаха, Вупăр, Вупкăн, Вутăш (Путăш), Юхха халапĕсем нумаях мар. Апла пулсан та вĕсем ытти халăхсен халапĕсенчен уйрăлса, авалтанах упранса юлнă, чăвашлăха палăртса тăраççĕ.*

### Алпастă

818

Масар пуçĕ — вилесен пуçлăхĕ. Вил пуçлăхĕ иккĕмĕш вырăнта. Алпасти виççĕмĕш вырăнта тăрать.

Çын чирлесен çак хаяр турăсемпе ырăсене парне параççĕ, çапла калаççĕ:

— Эсир пăхса тӳрлетĕр ку çынна, эпир сире хĕрĕх те пĕр çурта, хĕрĕх те пĕр икерчĕ, хĕрĕх те пĕр çăмарта паратпăр. Эсир пире хĕн парса ан тăрăр! — теççĕ.

819

Алпас — усал; хĕрарăм тет те çӳçне-пуçне салатса çӳрет тет.

## 820

Алпастă — çынна усал ерни е аçтакă ерни. Хĕр патне каччă пулса, каччă патне хĕр пулса пырат тет, кайнă чухне: «Ан кала никама та!» — тесе хĕнесе хăварат тет. «Эп кайнă чух ман хыçма ан пăх», — тесе çапса хăварат тет. Хыçĕ хăйĕн ытла та ирсĕр тет, умĕ илемлĕ тет. Вăл мĕн каланине итлемесен хĕнет тет.

## 821

Алпастă усал япала вăл. Хĕрарăм манерлĕ, вăрăм çивĕтлĕ, çивĕчĕсене салатса янă. Тăватă чĕчĕллĕ вăл. Чĕччисем вăрăм, çĕре çитиех сулланса тăраççĕ.

Пĕри çапла курнă ăна: çул хĕрринчи йывăç çинче ларать тет çӳçне-пуçне тураса. Чĕччисем çĕрелле усăнса тăраççĕ тет. Ним тума аптăраса тăнă-тăнă та утнă вара çав çын килнелле çав çулпах. Алпастă тĕлне çитсен лешĕ чĕччипе çапнă та кăна, ку çавăнтах тăн çухатса выртнă. Килне килсен нумай пурăнайман вара. Вилнĕ. Пĕтĕм ӳчĕ кăн-кăвак тет.

## 822

Алпастă вăл пĕчĕк ачасене пит пĕтерет тет. Ачана пĕччен хăварасса сыхласа кăна тăрать тет. Вара никам та çук чухне ачана хăй кăкăрне ĕмĕртсе хăварать тет те, ача вилет тет. Тата йывăр арăмсене сиен тăвать тет вăл.

Алпастă ан пустăр тесе пĕчĕк ачасен пуçелĕкне çĕçĕ е урăх çивĕч тимĕр хураççĕ, е йĕп те пулин тиреççĕ. Ĕлĕк йывăр арăмсене те кĕпе арăкĕ çумне йĕп тирсе çӳреме каланă.

# Арçури

## 823

Пирĕн чăвашсем пĕр-пĕр усал сывлăш куçа курăнсан е çĕрле вăрманта юрланине илтсен вăл Арçури теççĕ, унта çапла çавă çын вилнĕ теççĕ, çавă çын вилĕм çитмесĕрех вилнĕ те хăйĕн вилĕм çитиччен çавăнта пурнать теççĕ. Хăйĕн вилĕмĕ çитсен унтан каять теççĕ.

## 824

Арçури — вăрман чури. Вăрманти ырă-усал.

## 825

Куккука Арçури шăллĕ теççĕ. Ăна Арçури çынсене сăнашшăн авăтма хушнă теççĕ.

## 826

Тата пысăк вăрмансенче Арçури пур теççĕ. Вăл тĕклĕ тет. Ун пуçĕ пысăк теççĕ, куçĕ вир пĕрчи пек кăна теççĕ. Вăл çынна курсан «катти пар» тесе чупать теççĕ. Вăл вăрманпа тан тет.

## 827

Ĕçсе е çакăнса вилнĕ виле çумăр киле пуçласан шăтăкран тухса ик аллипе тăсса хăлаçланса тăрать тет. Вара çумăр пĕлĕчĕ темĕн тĕрлĕ çумалла пулсан та икĕ еннелле уйрăлса каять тет.

## 828

Вăрманта ĕлĕк упăтесем пурăннă теççĕ. Вĕсем çынсене тыта-тыта кăтăкласа вĕлерсе, катя пар тесе шăлĕсене кăларса илсе çинĕ тет. Унтан кĕтӳри лашасене утланса çӳре-çӳре халтан янă тет.

Йӳкйелсен лаша кĕтӳне çапла пĕр Упăте пырса ернĕ тет те лашасене пĕртте çиме паман тет, ялан кĕтӳри лашасене утланса, халтан кайиччен хăваласа çӳренĕ. Йӳкйелсем нимĕн те тума пĕлмеççĕ тет, Упăтене ниепле те тытаймаççĕ тет. Пĕрре кĕтӳри лашасене пурне те тикĕт сĕрсе яраççĕ тет. Упăте кĕтĕве пырать тет. Лаша çинчен анасшăн тет, анчах анаймасть тет: малти урисем, кучĕ çыпăçнă тет. Акă Упăте: «Алли хăпать та, кутьти хăпмасть, кутьти хăпать та, алли хăпмасть!» — тесе çухăрма тытăнать тет. Лаша хăранипе, пуçран каснă пек, ялалла чуптарчĕ тет. Упăте вара юлан ут çинче ялах пырса кĕрет. Йӳкйелсем Упăтене тытса пушă пурана хупнă вара. Çынсем пурте Упăтене курма пура патне чупаççĕ тет. Çавăнта Куракка Иванĕ пынă тет. Упăте кăна курсан: «Иван, шăйăрман кĕпе тăхăнакан!» — тесе кăшкăрать тет. (Ĕлĕк чăвашсем çĕнĕ кĕпене тăхăниччен тавăрса çĕввисене шăйăрнă.) Унтан пурана вут тĕртсе яраççĕ тет те Упăтене çунтарса яраççĕ тет. Упăти: «Йӳкйел юхăнтăр, Пухтел пухăнтăр!» — тесе йĕрет тет. Çавăнтан кайран вара Йӳкйел çичĕ хут çунса çичĕ хут пухăннă тет.

## 829

Чăвашăн юлашки патши çинчен çапла халап çӳрет. Пĕррехинче халăх патшана ярса тытать те вăрмана илсе кайса вĕлерет. Анчах виллине çĕре алтса чикмест, çаплах пăрахса хăварать. Çавăнпа вара патшаран Арçури пулнă тет.

## 830

Арçури çын виллинчен пулать тет, çĕр айне пытарманнинчен. Вилнĕ чухне кăçкăрса вилсен çавă вара кăçкăрса хăратса çӳрет тет.

## 831

Арçури — çынтан пулнă Усал. Ĕлĕкхи çынсем Турра та, сута та пĕлмен. Çавсем ялта пĕр канаш туса, кам усал ĕç тунă, кам ырă ĕç тунă, никама та калама хушман; çапла пĕрне-пĕри тупа туса чарнă. Кам суккăр, куçсăр, холхасăр, сусăр, оксак, ĕçлеме полтарими ват çынсене тăрантарасран хăраса вăрмана илсе кайнă та çапса вĕлернĕ. Вилнĕ чох мĕлле кăшкăрса вилнĕ, çавнашкал вăрманта кăшкăрса çӳренĕ вĕсен чунĕсем. Çавсене вара арçурисем тенĕ.

## 832

Арçури питĕ ватă карчăкран пулать тет.

Пĕр ватă карчăк пĕр-пĕччен пурăннă тет. Пурăнсан-пурăнсан йӳтесе каймаллах ватăлса çитнĕ. Йӳтенĕ карчăк пĕрре аташса каять те вăрмана çитсе тухать. Вăрманта аташса çӳрет-çӳрет те арçурисен тĕлне килсе тухать. Вара хăй те Арçури пулса каять.

## 833

Арçори лайăх мар вилĕмпе вилнĕ çынсенчен пулать тет. Çав вилнĕ çынсенчен пулнă арçурисем вăрмансенче, çырмасенче çӳреççĕ тет. Хĕлле е çулла каç полсан çол çинчи çынсене хăратса çӳрет тет çав Арçури. Ман асаннепе анне каланă тăрăх, хамăр ялти Çăтак Йоманĕнчен те Арçори полса кайнă тет. Вăл çуркунне çырмана кайса вилнĕ тет, кайран йытă пек полса çӳрет тет çынсене хăратса. Пĕрре Вăрăм Васли Кĕркури те каланăччĕ. Вăл армана кайнă та, çул çинче çакăн лавĕ хыççăн пĕр йытă пырать тет. Ку ăна йытă тесе чĕнчĕ тет те, леш таçта кайса çухалчĕ тет.

## 834

Арçури çапса пăрахнă е çакăнса вилнĕ çынсенчен пулнă теççĕ.

Вăрмана пошăт патне кайнăччĕ. Шăп çур вăхăчĕ. Çав вырăнта малтан çĕн çынна вĕлернĕ. Çĕн çынран Арçури пулнă теççĕ. Малтан, çул çине тухиччен, урапа вăраххăн шăкăртатса пычĕ. Кайран çул çине тухрăм та, урапа питĕ хытă вĕçтерсе кайрĕ.

## 835

Арçури сарăмсăр çакăнса е шыва сиксе вилнĕ çынтан пулнă. Вăл çын хăй пурнăçне хăй юратмасăр вилнĕ. Унăн чунне Шуйттан илнĕ те Арçури туса çӳренĕ.

## 836

Арçури вăрманта каçхине çынсене хăратса çӳрет тет. Хăй питĕ ахăрать, кулать, хăрушла кăшкăрать тет. Арçури вилнĕ, пытарман çынран пулать тет. Йăршу вăрманĕнче те ĕлĕк пĕр ват çынран пулнă Арçури çӳренĕ тет. Нумай çынна вăл хăратса вĕлернĕ тет. Пĕррехинче вăл пĕр çын патне самай çывăхах пынă тет. Çавăнта-çавăнта старикĕн кĕлетки выртать тесе калать тет. Çавна пытарма хушнă тет. Ку çынна чип-чиперех киле янă тет. Çав вилнĕ çын юлашкисене çĕре пытарсан Арçури вăрманта курăнма пăрахрĕ тет.

## 837

Арçури çапса пăрахнă çынтан пулнă тет. Çедуй яленчен пусласа Кивĕ Турун патне çитиччен кăвак лашапа чупатчĕ тет, çытармара* ачасем куçăнах курнă, яланах пĕр юман кутĕнчен тухать тет, çын курсан хăрăк шăмă пулса выртать тет, вара юман айне чакалтаса пăхнă тет те, студень пек кисренсе выртать тет.

* Çитермере.

## 838

Пирĕн ялсем Сăр улăхне утă çулма кайнă. Çĕрле вăрманта (вăрманĕ çырма-çатраллă пулнă) темле сасăпа арçурисем кăшкăрма пуçланă. Ватă çынсем çамрăксене арçурисем виле шăммисенчен пулса кайнă тесе каласа параççĕ. Шăммисем кăшкăрнă чух çӳлелле тăраççĕ тет. Кăшкăрман чухне çĕр çинче выртаççĕ тет. Çамрăксем вара арçурисенчен хăраса шыв ăсма кайма та пăрахнă.

## 839

Арçури вăрманта пурăнать. Вăл хĕр ачасем арçын ачасемпе вылясассăн пулнă ачаран пулать. Хĕрсем ача çуратсан, çынсенчен намăс тесе, часчасах ачине вĕлерсе çынсем сисиччен пĕр-пĕр çырмана пăрахаççĕ. Хыпаланса вĕсем ачи çине пĕр тăпра пĕрчи те пăрахмаççĕ. Çавăнпа вара тăпра сапманшăн, кĕлтумасăр вилнĕшĕн тата хăй ачине хăй вĕлернишĕн çав ача вăрманта Арçури пулать. Хăйне пăрахнă кун çав Арçури кăçкăрса çӳрет.

* * *

Чăвашсем каланă тăрăх, Арçури çынна питĕ кăтăклать: хăй ахăлтатать, хăй кăтăклать. Арçурие вĕлерсен ун пĕр тумлам юнĕнчен тата Арçури пулса тăрать. Арçури вăрманта пурăнать. Пĕрре пĕр çын Арçурине каçпа уйăх çутипе йывăç тăрринче çăпата туса ларнине курнă. Ун аллинче пĕр турат тет шĕшлĕ вырăнне.

## 840

Пĕр хĕрарăм ача çуратсан анкартине пытарнă тет. Ачи вилсех çитеймен, вара темиçе кон иртсен çавăнтан çĕлен пек вĕçсе тухса кайнă тет. Кайран, çĕр çине ансан, Арçури пулса кайнă тет. Ун тумтирĕ çап-çутă пулнă тет.

## 841

Пĕр хĕр качча каймасăрах ача çуратнă. Ачи ывăл пулнă. Анчах та ачине пăхса ӳстересшĕн пулман. Вăл вара хăйĕн ывăл ачине вăрмана кайса пăрахать. Çынсем çавăнтан Арçури пулса кайнă теççĕ.

## 842

Арçури вăл пĕчĕк ачаран пулать. Шуйттан та, Усал та, Эсрел те пĕчĕк ачаранах пулаççĕ. Çавăнпа та, ман шутпа, вĕсем пĕр сăмахах, пĕр япаланах пĕлтереççĕ тăваттăшĕ те: Арçурийĕ, Шуйттанĕ, Эсрелĕ, Усалĕ.

## 843

Хĕрсем ача туса пăрахнинчен полнă арçурисем. Вĕсем ĕлĕк полнă, халь таçта кайса пĕтрĕç. Çоккă вĕсем. Вăрманпа çĕмĕрсе пырать тенине илтнĕ. Арçури çул çинче пăтраштарса ярать тет. Çăпатана сылтăм урараан сулахайне, сулахайран сылтăмне улăштарса салтса сырсан çула пăтратмасть тет, тĕрĕс çул çине ӳкет тет çын.

## 844

Арçури пулса кайнă пирки тата çапла халап çӳрет. Ĕлĕк качча кайман хĕрсем ача çуратса вăрмана кайса пăрахнă тет. Вара çав пĕчĕк ача Усал пулса çитĕнсе çитет тет те кайран Арçури пулать тет. Вăрмана килен-çӳренсене хăратать тет е малалла чĕнсе, астарса çулран çухатса ярать тет. Вăрмана килекен çынна ятĕнчен пĕтĕм вăрман янрамалла кăшкăрать тет.

## 845

Ĕлĕкхи çынсем каланă тăрăх, арçурисем çапла пулса кайнă. Хĕрсем хырăмлă пулсан ачисене куç умне кăларасшăн пулман. Хĕрсем ирĕксĕрех чăваш карчăккисемпе тĕрлĕрен майсемпе усă курса 2—3 уйăхри ачасене вăхăтсăр пăрахнă. 18 çула çитсен ачи, арçын ача пулсан — Вĕри çĕлен, хĕр ача пулнă пулсан — Арçури пулнă. Çын хĕвел аннă вăхăтра, е хĕвел тухнă вăхăтра, е каçхине, çур çĕр вăхăтĕнче, çул çинче пырать пулсан Арçури ун урине салтса янă, ăна çухатса ярса нушалантарса çӳренĕ. Çын урине салтса ярсан ăна: «Тимахви, сан уру саланса кайнă! Тимахви, сан уру саланса кайнă!» — тесе кăшкăрса вăрманалла ахăрса кулса, вăйлă çил кăларса, вăрманти туратсене шатăртаттарса хуçса кĕрсе кайнă.

## 846

Арçури вăл хĕр ача çуратса çĕре пытарсан пулать тет. Вăл яланах пĕрпĕр вырăнтан тухать тет. Вăл вырăнтан пурте хăранă тет. Малтан вăл пĕчĕк муклашка евĕр (кушак е йытă) тет. Кайран кайнăçемĕн ӳтă капанĕ пысăкăш пулать тет.

## 847

Арçурирен Шăнкас халăхĕ мĕн ĕлĕкренпех хăранă. Ял çыннисем Арçурине вăрмансенче, çырма-çатрасенче курнă. Арçури çынсене хăратнă, çулран аташтарнă, йĕкĕлтенĕ, витленĕ.

Арçурине ял çыннисем вăрмана кайса пăрахнă ачаран пулнă теççĕ. Çĕнкас вăрманĕнче халĕ те Ача варĕ текен вырăн пур. Çавăнта ялти каччăсемпе çитĕннисем те лаша çитерме çӳренĕ. Арçурийĕ вара темиçе хут та лаша çитерекенсене хăратнă. Вĕсенчен кулнă, ахăрнă, йĕкĕлтетнĕ. Сасăпах вара çынсене усал ятсемпе витленĕ тет. Вара çитармана та çӳреме пăрахнă унта çынсем. Арçури вăл чăн-чăн сехре хăппи пулнă тет. Унтан çынсем питĕ хăранă тет.

## 848

Арçури вăрманта пурăнать теççĕ. Вăл Арçури хĕр ача çуратса пăрахнăскертен пулать теççĕ. Вăрманта Арçури кăчкăрнине илтсессĕн хирĕç кăчкăрма юрамасть. Хирĕç кăчкăрсассăн килсе çисе ярать, кăчкăрсассăн та тăват-пилĕк хутчен кăчкăрас пулать, вара Арçури этем ывăлĕ-хĕрĕ мăшкăллать тесе пымасть теççĕ.

## 849

Каçпала эпĕ хуралта çурт патĕнчи каска çинче чĕлĕм туртса лараттăм. Сисмен те, тĕлĕрсе кайнă. Такам çанăран туртнипе шартах сиксе вăранса кайрăм. Пăх та — каласа памалла мар хăрушă чĕр чун шăл йĕрсе ларать. Унтан куçран пат! таçта кайса çухалчĕ. Илтетĕп: шăкăр-шăкăр тăвать, хăй куçа курăнмасть. Эпĕ часрах алла çумри пăшал патне тăсатăп, анчах та хускатаймастăп. Çапла пулса çав.

## 850

Катăк уйĕнче пĕри хĕвел тухичченех пăрça сăвăрма тухнă тет. Çакăн патĕнче пĕр пĕчĕк ача чупса пычĕ тет.

— Митрак пичи, Митрак пичи (çынĕ Мĕтри ятлă пулнă), кăлтăрин тăваканне пар-ха, кăлтăрин тăваканне пар-ха, — тет ача.

Ку çын кăшăл кĕреçине тыт та хăвала. Лешĕ Куканар вăрманнелле тарчĕ тет. Вăрман çăтăрт-çăтăрт, çăтăрт-çăтăрт, чăш-чаш анчах çĕмĕрĕлсе юлчĕ тет.

Çав ача Арçури пулнă, пăрça çиме пынă-мĕн.

## 851

Ойран вотă çолса килсе. Пăхап та: çол çинче шор сăхманлă старик тăра парать. «Ай-ай, ăçтан сиксе тохрĕ ко?» — теп. Вăл корăнсанах вăрман кĕр-кĕр шавлама, кĕрлеме поçларĕ. Пăхап: çав вăрманалла çĕмĕрттерсе кĕрсе кайрĕ. Хыçалтан вăрман ахăрса хоçăлса юлчĕ.

## 852

Эпĕ вăрмана кайма шутларăм. Вăрман витĕр пыратăп. Пĕр хĕрарăм корзина йăтнă та:

— Ăçта каян, юлташ? — тет.

— Лесхоза каятăп-ха, — тетĕп.

— Эпĕ те пыратăп, — тет.

Утрăмăр-утрăмăр, çаплах лесхоза çитейместпĕр.

— Ах, тор çырлах, — тесе порта солахай хол çинчен илсе сылтăм хол хошшине тытрăм.

Хайхи хĕрарăм корзинине шарт лартрĕ те:

— Ах, не успела, — тесе ик пĕççине шарт çапрĕ. Вара кулса ахăрса, пĕтĕм çĕре çĕмĕрсе вăрман витĕр çуйхашса кайрĕ. Пăхатăп та — тепре ярса пуснă пулсан пĕвене сикеттĕм.

Вот мĕнле улталаса шыв хĕррине илсе пынă мана.

## 853

Кинемей уйран çулса килнĕ чухне шур сăхманлă старике курнă. Вăл курăнса кайсанах вăрман кĕр-кĕр шавлама, кĕрлеме пуçларĕ тет. Кайран куçран çухалнă, вăрмана кĕрсе кайнă тет. Вара вăрман ахăрса, хуçăлса юлчĕ тет.

## 854

Шăнкас çынни пĕрре акана кайнă тет. Çумăр çума пуçланă хайхи. Ку çумăртан хăраса вăрман хĕррине пырса ларнă. Вăрмантан качака путекки макăрса тухрĕ тет.

— Котенук, — тесе калать тет Шăнкас çынни.

— Мекек, — тет качаки.

Кăна аçам аркипе чăркать тет. Çумăр хытăрах çума пуçланă. Лашине утланать те Шăнкас çынни путеккине чăркаса килне илсе каять тет.

— Мекек! — макăрать тет качаки.

— Котенук! — тесе ачашлать тет.

Çапла виçĕ хут καланă хыççăн качаки «котенук!» тесе хăй кăшкăрса ячĕ тет. Шăнкас çынни ăна айăккинелле персе ячĕ тет.

— Улталарăм, улталарăм! — тесе сиккелет тет. Качака путекки пулнă Арçури ахăлтатса вăрмана кĕрсе карĕ тет.

## 855

Пĕрре ĕлĕк пирĕн маçакпа юлташĕ вăрман кӳллине пулла кайнă тет. Каясса çĕрле кайнă вĕсем. Лараççĕ тет хайхискерсем пулăра. Çапла ларнă хушăра йывăççем хушшинчен пĕр шап-шурă тиха тухрĕ тет те шыв ĕçме тытăнчĕ тет.

— Ах, чипер-çке ку тихи, — тесе лараççĕ тет маçакпа юлташĕ.

Хайхи тиха шыв ĕçнĕçемĕн çитĕнме пуçларĕ тет, куç умĕнчех ӳссе пырать тет.

— Пĕтрĕ пуç, ку, путех, тиха мар пуль, Арçури пуль, — тесе тарма тытăнчĕç тет, лешĕ вăрман кисренмелле ахăрса ячĕ тет.

Ку Арçури пулнă тет.

## 856

Пĕрре пирĕн асатте юнашар яла кайнă тет. Нумай калаçса ларнипе каç пулса ларнă тет. Асатте киле килме тухнă тет. Каçĕ уйăхлă, çăлтăрлă, уяр каç пулнă тет. Ял патне çитеспе пăхать тет те асатте, ял умĕнче пăру пысăкăш Арçури ларать тет.

Çаплипех утатăп тет асатте. Ун патне çитерехпе йытă пулса утса çӳрет тет. Кайран кушак пулса чупма тытăнчĕ тет. Хăй пĕчĕк ача пек кăшкăрать тет. Иртсе кайма тăрсан асатте умĕпе кăшкăрса чупса каçса кайрĕ тет те, асатте ним курми пулса ларчĕ тет. Вара асатте аран-аран киле çитнĕ. Пурăнна-пурăннă, çаплах куçĕ уçалмасть тет ун. Асанне юмăçа кайса Киремете парне парсан тин уçалнă тет асаттен куçĕ. Кун хыççăн тин вăл лайăх куракан пулнă.

## 857

Арçурисем, шойттансем халь веç çын ăш-чиккинче, ĕлĕк вĕсем çынсем паках хăйсене тытнă, мĕншĕн тесен çынсем он чохне халь пек осал ĕçсем томан, осал сăмахсем каламан.

Пĕрре пĕр каçпа выртма кайса. Он чохне ачасем полса та-ха перн. Эх, Арçурине корас килсе шотсăр он чохне, вăл пернщăн, ачасемшăн, интереснă полса. Ăна каçкăртăмăр вара: «Арçури, Арçури, тохса пере корăн-

ха», — тесе. Хайхи пĕр мăкăр синксе тохрĕ тем пушши. Орасампа ҫĕре чавать, мырякисам коккăр-маккăр, пĕр хăлаҫ тăршши. Эх, хамрăн лашасене пăхмасăрах ятăмăр килсене. Но, хăраса тăк хăраса ҫан чохне. Орăх пĕрре те корман онашкал вара.

## 858

Арҫурисем вăрманта пурăнаççĕ тет. Пирĕн ял таврашĕнче вăрмансем ҫук та, арҫурийĕсем те ҫук пуль. Анчах ăна курнă текенсем пур.

Ҫапла пĕрре ман аттесем вăрман касма кайнă тет. Тĕттĕмленсе ҫитрĕ тет, нимĕн те курăнмасть тет. Вара ман аттесем вут чĕртсе янă та ăшăнма, чĕлĕм туртма ларнă тет. Ҫав вăхăтра пĕри кăшкăрса макăрса ячĕ тет. Сасси пĕчĕк ачанни пек тет. Питĕ хытă йĕрет тет. Вара пирĕн аттесем ҫав ачана шырама кайнă тет. Шыраҫ-шыраҫ тет, ачи ниҫта та курăнмаҫ тет. Ларчĕҫ тет те кайса, каллех йĕрет тет ача. Татах кайрĕҫ тет шырама. Пыраҫ тет ҫапла йывăҫсем хушшипе, курах кайрĕҫ тет йывăҫ ҫинче пĕр ҫын ларнине. Элĕс-мелĕс тет хăй. Йĕре-йĕрех хăй ҫинчен каласа пачĕ тет. Анчах та вăл мĕн каланине эп пĕлмес, атте мана каласа памарĕ, вĕсене Арҫури хушман тет.

## 859

«Ҫапла, — тесе каласа параччĕ мана атте, — Арҫурирен хăрарăм, хăйне вара курмарăм». Аннепе иксĕмĕр Апашкассине сăра ĕҫме кайрăмăр тетчĕ. Вара сăра ĕҫнĕ ҫĕртен ҫĕрлех тухнă иккен. Лашапа пулнă, урапапа. Ҫĕнкас вăрманне кĕрсессĕн, каялла килнĕ чух, вăрман варринче пирĕн лаша тăпах чарăнса тăчĕ тет. Атте лаша ҫинчен антăм тет. Малта ҫын йăтайми пысăк каска выртать тет ҫул ҫинче. Тапратас тесе шутлатăп, йăтаймастăп тет. Лаши пуҫне ҫӳлелле каҫăртрĕ тет те пĕр утăм та тумасть тет. Вара аннӳ анчĕ те, вăл чĕлхе пĕлеччĕ, усалсене хăваласа ячĕ. Умри каска тăчĕ тет те вăрманалла ахăрса кĕрсе кайрĕ тет. Лаши те вара хăранипе тапса сикрĕ тет малалла. Ҫав каски ахăрса кĕрсе кайсан пĕтĕм вăрман чĕтренсе кайрĕ тет. Вара уя тухса тăтăмăр тет. Уйра лаштах пулчĕ тет. «Сассине илтрĕм те хăйĕнчен питĕ хăрарăм, анчах та хăйне вара курмарăм», — тетчĕ.

## 860

Каҫхине лашасемпе выртмана килсен ачасем кăвайт хĕрринче арҫурисем ҫинчен калаҫса ларнă. Ачасемпе пĕрле ларакан Петрок мучи: «Эп арҫурисене йăхăрма пултаратăп», — тенĕ. Ачасем харăсах арҫурисене йыхăрма ыйтнă. Петрок мучи вăрман хĕррине пынă та унти турпассене пуҫтарса тем мăкăртатса калаҫнă. Ҫавăнтах вăрманта арҫурисем ашкăнма тытăннă, йывăҫсем хуҫăла-хуҫăла ӳкнĕ, ҫил ашкăннă. Арҫурисенчен хăраса лашасем пĕр ҫĕре пухăннă тет. Арҫурисем ашкăнма чарăнсан ачисем вăрмана кĕрсе пăхнă. Вăрман малтанхи пекех, ним те пулман тет.

## 861

Арҫури ҫинчен пирĕн атте акă мĕн каласа кăтартрĕ мана. Пирĕн мучи Арҫури чĕлхи пĕлеччĕ тет, пĕрре аттепе иккĕш соха патне катари уя кайрăмăр тет. Виҫĕ лашапа, иккĕшне соха кӳлсе тет, пĕрне сӳре кӳлсе тет.

Пĕр лашине хыççăн ярса тет, вăрман урлă каçнă чух çавă, хыççăн ярнă лаши, йывăç çулçи çикелесе пырать тет. Çав хыççăн ярнă лаша çулçă çиме хăтланса çапă купи çине пуса ячĕ тет. Çапă купи айĕнче такам: «Пуç çине-е!» — тесе кăçкăрса ячĕ тет.

Тата çав пирĕн мучиях пĕрре çĕрле ĕçкĕрен килнĕ чух вăрман урлă каçмалла пулса тет, вăрман урлă аран каçса килсе тесе калать тет. Арçури тапăнса тет, кăшкăрма тапратрĕç тет. Тата çул çине йывăç касма тапратрĕç тет, унччен те пулмарĕ тет — çул хĕрринче юман çумăн иртсе килмелле тет, çав юмантан пĕр çын çакăнса тăрать тет, вара юман патне çитеспе татăлса анчĕ тет, татăлса ансан çитĕне пуçларĕ тет, вара мучи аран иртсе килсе тет. Кавун пек пулса кайрĕ тет, вара яла çитеспе çул çине пăхать тет: пĕр ĕçлĕк выртать тет. Илет те хурать урапа çине, хай ĕçлĕк урапа çинче тапратрĕ тет çитĕнме, вара урапа çинчен аран йăвалантарса ярса тет. Тата пĕрре аттесем ача  чух кĕтӳ выртнă çĕре Арçури чĕлхи пĕлекен çын выртма тухса тет. Çав çын ачасене: «Ачасем, сире Арçури кăтартам-и?» — тесе каларĕ тет. Аттесем: «Кăтарт», — терĕмĕр тет. Вара çын тем йăпăштăн пуплякаларĕ тет те, вăрманта тапратрĕç тет попляма, кăшкăрма, тапратрĕç тет кулма, унччен те пулмарĕ тет — тапратрĕç йывăç касма, вара çав çынни тапратрĕ тет чĕлĕм туртма, арçурисем вăрманта ӳсĕреççĕ тет: «Ăххăм, ăххăм, тьфу, е эсĕ тата тĕтĕм яратни-ха? Чăмай сана!» — тесе кăçкăра пуçларĕç тет. Унччен те пулмарĕ тет — çил-тăвăл тухса килчĕ тет, пĕтĕм вутне вĕçтерсе кайрĕ тет. Вара аттесем хăрарăмăр тет. Çапла авалхи çынсем хăтланнă. Халĕ пĕр Арçури те çук, ним те çук.

## 862

Ĕлĕк ачасем ут кĕтме çĕр каç выртмаллах кайнă пулнă. Кăвайт хутнă та лараççĕ тет. Çав вăхăтрах пĕр шур сухаллă старик килсе тухрĕ тет. «Сире Арçури кăтартас-и?» — тесе ыйтрĕ тет. «Кăтарт, кăтарт», — теççĕ тет ачисем. Унччен те пулмарĕ тет — вăрман кашлама тытăнчĕ тет, йывăççем хуçăлма пуçларĕç тет. «Мучи, чар-ха!» — тесе йăлăнма пуçларĕç тет хăранă ачасем. Вăрман кашлама чарăнчĕ тет. Кайран пăхрĕç тет те, пĕр хуçăлнă турат та çук тет. Çав шур сухаллă старик чĕлхеçĕ пулнă тет. Чĕлхеçĕсем арçурисене кăларма пултарнă тет.

Пĕрре ман кӳршĕ вăрмана кайнă. Хайхи ман кӳршĕ вăрманта йывăççем шатăртатнине илтет тет. Арçури йывăççене шатăртаттарса хуçать тет. Вăл вăрмантан частарах васкаса киле килнĕ тет.

Тепĕр кунне вăрмана кайса пăхнă тет те, йывăççем чиперех лараççĕ тет. Çакă вара Арçури пулнă пулать.

## 863

Пĕррехинче тырă вырма кайсан пĕрисем çĕр выртма юлчĕç тет. Ачасем пĕр çĕре пухăнчĕç тет. Пĕр ачи кăвайт чĕртрĕ тет те айккине, кусем патне, килсе ларчĕ тет. Кăштахран вутă мĕнле çуннине пăхма кайрĕ тет. Каялла часах çитрĕ тет. Пичĕ шурса кайнă тет, аран сывлать тет.

— Мĕн пулса? — тесе ыйтаççĕ тет.

— Пирĕн вут кутĕнче Арçури ларать, — тесе каларĕ тет.

Пурте кайса пăхсассăн унта Арçурине курмарĕç тет. Унăн урисен тата аллисен йĕрĕсем анчах юлнă тет.

## 864

Ҫак халапа асатте виличчен калама юрататчӗ.

«Пӗрре эпӗ вӑрмана кайнӑ, тем ӗҫпеччӗ, халь астумастӑп ӗнтӗ. Ӗҫсем туса пӗтерейменпе пирки каҫа юлтӑм. Ҫырма урлӑ каҫнӑ хыҫҫӑн такамсем хыҫалта саспах: «Хи-хи-хи! Ха-ха-ха!» — кулса пынине илтрӗм. Пӗччен анас мар-ха, хыҫалта килекен ҫынсене кӗтсе тӑрас-ха тесе тӑратӑп. Вӑхӑт та сахал мар иртрӗ ӗнтӗ, сассем уҫҫӑнах илтӗнеҫҫӗ, анчах ҫыннисем курӑнмаҫҫӗ.

Татах кӗтсе тӑратӑп-ха. Каллех ҫуйхашни, кулни, алхасни илтӗнет. Утма пуҫларӑм та аса илех кайрӑм: ара, ҫак тӗлте, Шуйттан лупашкинче, яланах арҫурисем тухаканччӗ».

## 865

Пӗр ҫын хӑйӗн кӳршипе вӑрмана вутӑ турттарма кайма калаҫса татӑлнӑ пулнӑ тет. Ку ҫын ирхи апат ҫисе ларать тет. Унччен те пулмарӗ тет — чӳречерен такам шаккани илтӗнчӗ тет. Унтан: «Эпӗ кайрӑм», — тесе илтӗнчӗ тет ку ҫынна хайхискер. Ку кӳршӗ кайрӗ пулӗ-ха тесе кӳлсе вӑрмана тухса кайрӗ тет. Вӑрмана ҫитрӗ тет. Лаша утма чарӑнчӗ тет. Утмасть те утмасть тет. «Ӳкетӗп», — тени илтӗнчӗ тет. Ку ҫын пӑхнӑ та ҫӳлелле, йывӑҫ ҫинче Арҫури ҫакӑнса тӑрать тет. Вара тин шутласа илнӗ, ку чӳречерен шаккани Арҫури пулнӑ иккен.

## 866

Пӗррехинче Хӗветӗрпе Йӑван вӑрмана вутӑ патне кайма тапранаҫҫӗ тет. Хӗветӗрӗ Йӑванне калать тет: «Эсӗ иртерех тӑрсан мана пырса тӑратха», — тет.

Ҫапла Хӗветӗрсен кантӑкӗнчен шакканӑ сас илтӗнет. Хӗветӗр часрах тумланса, лашине кӳлсе вӑрмана вӗҫтерет тет. Хӑй кӑштах Йӑванӗ ҫине ҫилленчӗ тет хӑйне кӗтсе тӑманшӑн. Хӗветӗр вӑрмана ҫитрӗ тет те Йӑванӗ инҫетех кӗрсе кайман пуль-ха тесе Йӑванне кӑшкӑрма пуҫларӗ тет. Вӑрмантан, шалтан: «Эп кунта!» — тесе кӑшкӑрнӑ сас илтӗнет тет. Хӗветӗрӗ ҫаплах сасӑ хыҫҫӑн кайса ҫулне ҫухатрӗ тет. Лаши те ывӑнса ҫитрӗ тет. Вара Хӗветӗр Арҫури астарнине ӑнланса илчӗ тет те часрах лашана каялла ҫавӑрса аран-аран тухрӗ тет. Ял енчен пӗр кӳлнӗ урапа килет тет. Йӑван пулчӗ тет ку. Йӑванӗ Хӗветӗрӗ ҫине пӑшӑрханнӑ тет: «Мӗншӗн мана кӗтмесӗрех кайрӑн вара? Хӑйне вӑратма пытӑм та, хӑй вара тухса та кайнӑ», — терӗ тет.

Ҫапла Хӗветӗре Арҫури пӑтраштарса ҫӳренӗ тет.

## 867

Ваттисене асӑннӑ каҫ асаттепе мӑн асатте лаша кӳлсе Ҫарӑк ҫырмине вӑрман вӑррине каяҫҫӗ. Халь ҫаксем вӑрман касаҫҫӗ те икӗ лав тӑваҫҫӗ. Пирӗн лашасем хартлатма пуҫларӗҫ тет. Асатте те, мӑн асатте те пӗр сӑмах чӗнместпӗр тет. Вӑрманта арҫурисем питӗ вӑйлӑ кӑшкӑрашма, шуйхашма пуҫларӗҫ тет. Кусем лавсене ҫыхаҫҫӗ те, мӑн асатте малтан пырать, асатте ун хыҫӗнчен. Халь Сурӑма ҫитеҫҫӗ.

Мăн асатте калать асаттене: «Васли, хăрарăн-и? — тет. — Арçурисем вăрманта мĕнлерех çуйхашаççĕ. Çуйхашса таçта Курăс пĕви патне каялла çаврăнса кайрĕç», — тет.

## 868

Пĕр хĕрарăм вăрмана мăйăр татма кайнă тет. Вăл çул вăрманта питĕ нумай мăйăр пулнă тет. Хайхискер, ку хĕрарăм чи пулнисене пухас тесе мăйăрне кашнинчех катса пăхать тет те пĕр мăйăрне катса илсе пăхрĕ тет. Ун хыçĕнче мăйăр катни илтĕнчĕ тет. Çаврăнса пăхать тет те, никам та çук тет. Ку хĕрарăм хăранипе каялла чакать тет те, çав хушăра такам çухăрса ярать тет. «Ай-уй, чĕлхе çинех пусса ятăн вĕт-ха!» — тесе кăшкăрни илтĕнчĕ тет. Ку хĕрарăм хăраса кайнă тет те мăйăр хутаççине илме мансах килнелле тарнă тет. Çавăн хыççăн пĕччен вăрмана кайма хăранă тет. Арçури çакăн пек хăратнă тет.

## 869

Пĕрре çапла икĕ çын пулă тытма кайнă. Шывĕ хĕрринчен вăрман чăсăлса выртать. Çаксем хăйсемпе пĕрле, час таврăнаймăпăр тесе хуран, кĕрпе, çу, сĕт илсе кайнă. Пулă тытатпăр та унтах яшка пĕçерсе çийĕпĕр тесе каç выртмаллах кайнă çаксем. Пăртак тыткаласан кăсен хырăм выçа та пуçланă. Сăрта хăпарса хуранне çакса яшка пĕçерме тытăнчĕç тет кăсем. Çав вăхăтра вăрманта пĕр Арçури шари! кăçкăрса ячĕ тет. Нихçан Арçури курманскерсен курасси килсе кайрĕ тет. Пĕри Арçури мĕнле кăçкăрнă, çавăн пек кăçкăрма пуçларĕ тет. Арçури пĕрмаях çаксем патнелле: «Ихи-хи-хи!» — тесе пырать тет. Пĕтĕмпех çывăрсах çитсен çаксем хăраса часрах яшка хуранне илсе килнелле вĕçтере пачĕç тет. Унтанпа Арçурине кăçкăрма мар, пулă тытма кайма та хăраççĕ. Кама курнă ялта пурне те: «Турă урăх çавна ан кăтарттăрччĕ», — тесе анчах çӳреççĕ тет.

## 870

Кăна атте каласа пачĕ. Пĕринче вăрмана кăмпана кайсан, çӳресен-çӳресен ывăннипе уçланкăна канма ларнă та çывăрса кайнă. Вăранса кайсан курать — тĕп-тĕттĕм. Ниçта нимĕн те илтĕнмест, нимĕн те курăнмасть тет. Çӳренĕ-çӳренĕ вăл, çул тупайман, çухалса кайнă. Çапкаланса çӳресен-çӳресен пĕр уçланкăна пырса тухрăм тет. Пăхатăп — уçланкă варринче пĕр шап-шур сухаллăскер, кукленсе ларнăскер, ним шарламасăр пăхса ларать тет. Хăраса ӳкрĕм тет. Каялла каяс — çулĕ малаллах каймалла пек туйăнать тет, киле çавăнталла каймалла пек туйăннипе алла вăрăм патак илтĕм тет, хăра-хăрах пыратăп тет. Çитрĕм тет, ним те шарламасть тет. Шип-шип, пăт-пат! туни илтĕнчĕ тет. Патака сулса ятăм тет те, темĕскерле «ай» тенĕ пек илтĕнсе кайрĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет — темĕскерле çухăрса, ихĕрсе, йывăççене шăтăртаттарса çил çĕмĕрттерсе кашлатни илтĕнсе кайрĕ тет. Тарма пуçларăм, хуса çитессĕн туйăнать, малта та çухăраççĕ, ихĕреççĕ, ача макăрни пек калама пĕлмелле мар сассем илтĕнеççĕ. Темле май, вăрмантан мĕнле тухнине те астумастăп хăранипе тет. Вăрман тепĕр енне тухрăм тет. Киле каймалли çул çине тухсан та итлесе пăхрăм тет, çаплах кăшкăраççĕ, туй тейĕн тет. Салтакра та, вăрçăра та пултăм тет, Турра та ĕненместĕп, ну, çавнашкал арçурисене пĕрре курма тӳр килчĕ тет.

## 871

Пĕр çын вăрмана пушăт касма кайнă тет. Çул çинче лашине тăрук тем пулчĕ тет. Тăрăшса чăп! тапса туртать тет йывăр мар лава. Кăшт кайсассăн лав çăмăлланать каять. Çав вăхăтрах вăрманалла такам: «Лах-лах-лах, Якур! Якур!» — тесе кăшкăрса кулать тет. Çавă Арçури пулнă тет.

## 872

Ĕлĕк пĕрре пĕр улах ачи, Хветут ятлăскер, улахран таврăнать тет. Çырмара йăмра çинче пĕр Арçури ларнă пулнă тет, Хветут уна курман тет. Сасартăк кăшкăрса хăратсах пăрахрĕ тет Хветута. «Хветут, ăçта каян?!» — тесе кăшкăрчĕ тет. Хветучĕ каларĕ тет: «Улахран таврăнатăп», — тесе. Арçурийĕ вара икĕ аллипе кутне çат-çат-çат! тутарчĕ тет те вилес пекех ахăрса юлчĕ тет. Вара улах ачийĕ килнелле хăпарса карĕ тет.

* * *

Пĕр ачапа асламăшĕ вăрмана хăрăк çĕклеме кайнă тет. Хăрăк пуçтарса таврăннă чух асламăшĕ пĕр питĕ хитре çутă чĕлĕм тупрĕ тет те куна илсе чикрĕ тет. Вара хыçалтан пĕр сасă çаплах кăшкăрса пырать тет, тулькăш хăй курăнмасть тет. «Чĕлĕме пар, чĕлĕме пар, чĕлĕме пар!» — тесе кăшкăрса хыçалтан çаплах пырать тет. Вара асламăшĕ чĕлĕмне кăларса пăрахса хăварчĕ тет. «На чĕлĕмна», — тесе персе пачĕ тет. Вара Арçурийĕ питĕ хытă ахăрса ячĕ тет. «Ха-ха-ха-ха! Чĕлĕме пачĕ, чĕлĕме пачĕ», — тесе каялла çаврăнса чупрĕ тет.

* * *

Икĕ хусах ачан пĕр пысăк вăрман витĕр тухса каймалла пулнă тет. Çул çине тухсан вăрмана çитиччене тĕттĕм пулнă тет. Вăрмана çитсен тĕттĕм çĕртре, пĕр пысăк вăрăм йывăç тăрĕнче, кăраççин çути манерлĕ çутă курăнса кайрĕ тет. Уна пĕр ачи курнă тет те тепĕр ачине каларĕ тет: «Ваçça, пăх-ха, пăх», — тесе. Вара иккĕшĕ те хăранă тет. Çав çутă пĕр йывăç çинчен тепĕр йывăç çине сике пуçларĕ тет. Вара çав çутă вăрман тăрăшшĕпех çав сынсем хыççăн: «Ваçça, пăх, Ваçça, пăх, Ваçça, пăх!» — тесе кăшкăрса пычĕ тет. Вăрмантан тухсан вара вăрманах юлчĕ тет.

## 873

Пĕррехинче Микита вăрман вăрлама кайнă. Çулпа пĕчченех пынă Микита, кĕçех вăрмана çитет. Вăрмана çитсен лашине ярать, вутă хатĕрлет. Арçури пырать. Пăркăч орине питĕ хытă ыраттарать. «Ах-ах-ах, Микита, ырат-тар-ч-ч-ч-ĕ!» — тесе çухăрса ячĕ тет. Сасси инçе кайса хыттăн илтĕнчĕ тет.

## 874

Ĕлĕк-авал Арçури улăхсем çинче хуçа пулса çӳренĕ тет. Вăл çынсен кĕтӳри вырьăхĕсене тыта-тыта çинĕ тет. Кĕтӳçисене кăтăкласа, астарса вĕлернĕ тет. Пĕррехинче Арçури пĕр улăхра кĕтӳ кĕтекен кĕтӳçĕ патне пырать те ăна астарма тытăнать. Кĕтӳçĕ хăраса тăмасть, унăн пушă пулнă,

вăл пушшине илет те çат! çатлаттарать Арçурине. Пушши чăв-ваш! туса илет тет. Арçури ыратнине тӳсеймесĕр хыçалалла пăхмасăр тарнă тет.

Çавăн хыççăн Арçури кĕтӳçсем патне пырсан яланах малтан: «Чăвваш, чăвваш пур-и?» — тесе ыйтнă. «Пур», — тесен яланах пăрăнса иртме тăрăшнă тет. Анчах та ăна яланах пушăпа хĕртсе кăштах ăса вĕрентсе илнĕ тет.

* * *

Пĕррехинче Арçури пурăнакан вăрман хĕррипе вăрă-хурахсем пынă тет. Вĕсем Арçурирен кунта мĕнле халăх пурăнни çинчен ыйтнă тет. Арçури хăйне пушăпа хĕненине аса илет тет те: «Чăвваш, чăвваш», — тесе калать тет. Çавăн хыççăн вăл тăрăхри çынсене чăвашсем тесе каланă тет.

## 875

Пирĕн ялсем çĕрле пошăт касма кайнă та, вăрмана çитсен чĕлĕм тортма лартăмăр тет. Чĕлĕм тортсан пĕри пĕр еннелле, тепри тепĕр еннелле кайрăмăр тет. Пĕри кĕсйине чиксе пăхнă тет те — табак хотаççи çок та тет. Вара тепĕр енчи юлташне: «Çитăр, табак хотаççи санра пор-и?» — тесе чĕнтĕм тет. Тепри çта ларнă çĕре кайса шырам тесе тăраттăм тет. Унччен те пулмарĕ тет ку «Çитăр» тесе чĕннĕ самаха Арçури илтнĕ тет те: «Çытăр! Çытăр! Çытăр! Çыт! Çыт! Çыт! Ç-ç-ç», — тесе виçшер хут ларарĕ тет. Кайран мĕнле чĕнмеллине мана пуçларĕ тет. Урăх кăçкăрма аса илеймерĕ тет те кăçкăрма чарăнчĕ тет. Кĕсем, пошăт касассу япалу, тарнă тет. Вăл вырăнта хальччен те Арçурине курнă тенине илтсе тет вĕсем.

## 876

Кăмпана кайсан йăлăма, Атăл хăпарнă вырăн полнă çĕре çорконне, чарăнтăмăр. Вырăнĕ-вырăнĕпе çатрака поçтарса копаласа лартнă. Çатракасем çо конĕнче типнĕ. Эпир çав çатракана поçтартăмăр çĕрле вот чĕртме. Каçпа вот чĕртрĕмĕр, нăмай та вăхăт иртмерĕ, çил тохса карĕ. Арçори çил пек çаврăнса çитрĕ те самантрах вотта салатса ячĕ. Хăй тоттех çапла калат: «Онтри кантри, йĕм кантри», — тесе темиçе хот та каларĕ те вăрмана кашлаттарса карĕ. Вăрман кисренсе йолчĕ.

## 877

Вăрмана кайсассăн кăшкăрса çӳреме те, хыттăн калаçма та юрамасть тет. Унсăрăн калаçнине илтсе вăрманти арçурисем аташтарма пултараççĕ иккен. Вăрманта пĕр-пĕрне ятран та чĕнме юрамасть тет, мĕншĕн тесен арçурисем ята илтсен юлташ пек пулса хирĕç чĕне пуçлаççĕ тет, вара чĕнсе-чĕнсе пĕр-пĕр çырмана та кĕртсе яма пултараççĕ е чăтлăхра аташтараççĕ.

## 878

Ĕлĕк-авал Сурăм вăрманĕнче Арçури алхасса çӳренĕ тет. Çав вăрман хĕрринче Шетмĕпуç çыннисен çĕрĕсем пулнă тет. Тырă вырнă вăхăтра кунта ял халăхĕ хĕвел анса ларичченех ĕçлемен, лашисене кӳлсе килĕсене са-

ланнă, мĕншĕн тесен хĕвел анса ларсанах вăрманта Арçури питĕ алхаснă тет.

Шетмĕпусĕнче пĕр арçын пурăннă тет. Вăл хăй кĕлеткипе пĕчĕкскер пулнă пулин те питĕ вăйлă та хăюллă пулнă, нимĕнрен те хăраман тет.

Пĕррехинче çав арçын ятарласах, çынсем килĕсене кайса пĕтнĕ хыççăн, юлан утпа пĕчченех юлнă тет. Хĕвел анса ларса тĕттĕм пулма пуçларĕ тет. Арçынни Эрхип ятлă пулнă тет. Хайхи Арçури вăрмантан «Эрхип!» тесе ятран кăшкăрма пуçларĕ тет. Ак ку Арçурине хăй хирĕç кăшкăрнă. Арçурийĕ татах хирĕç ятран чĕнет тет. Эрхипĕ Арçурине вăрмантан тухма чĕнет тет. Вара Арçурийĕ йытă пек пулса тухнă тет. Кайран Эрхип йытта калаçтарса ял патнех çитернĕ тет. Юлашкинчен хайхи Эрхип çак йытта каялла вăрмана çити юлан учĕпе хăваласа янă тет. Лешĕ вара, Арçурийĕ ĕнтĕ, тем те пĕр ятлаçса кăшкăрса тарнă тет.

## 879

Акă пĕр вăхăтра пĕр кил-йыш вăрман çывăхĕнче тырă вырнă тет. Çав Арçури тĕттĕм пулсан кил-йыш ашшĕ ячĕпе кăшкăрчĕ тет. Çак çын хăйне кăшкăрнине илтсен пĕр-пĕр çын кăшкăрчĕ пулĕ тесе хирĕç кăшкăрчĕ тет. (Вăл вăхăтра çумăр çăвать тет те, ыттисем çĕмел кутне кайрĕç тет.) Çак ашшĕ кĕлте туса юлчĕ тет те, хай Арçури çынна пĕрех пырса çăтса ячĕ тет. Çав çынна çисе ярсан кил-йышсем йĕре пуçларĕç тет. Вĕсем вара çынсенчен мĕн тăвас-ши кăна тесе ыйтнă тет. Çынсем вара вут çуркамĕнчен çын кĕлетки туса хирĕç кăшкăрма хушнă тет. Вĕсем вара çынсем каланă тăрăх çапла туса хунă тет. Арçури каллех кăшкăрнă тет, вĕсем те пĕри хирĕç кăшкăрса аякка тарнă тет. Хай Арçури пынă тет вут çуркамне те хыпса ячĕ тет. Вут çуркамĕ карланкине тăрăнчĕ тет. Арçурийĕ: «Тархасшăн, кăлар, çынна паратăп!» — тесе кăшкăрать тет. Çав Арçури вара вăрманта кăшкăрса пĕтнĕ тет.

## 880

Ĕне çитерме кайрăмăр рощана. Унта вара пурте пур: ватти-вĕтти, çамрăкки. Пирĕн ĕнесем çапла майпа енчен енне саланса пĕтрĕç. Варварин те, Праскин те ĕнисем çук. Иккĕшĕ те касса кайсах ĕнисене шыраççĕ. Праски кăшкăрать: «Варвари, ĕнӳ тухрĕ-и?!» — тет. Ăна хирĕç ĕнтĕ Арçури кăшкăрать: «Тухман!» — тет.

Арçурийĕ Хураска çулĕпе хăпарчĕ. Кайран вара мĕнпур йывăç-турата хуçа-хуçа çĕмĕрттерсе тарчĕ. Тепрехинче кайсан куратпăр: йывăççем те хăйсен вырăнĕнчех лараççĕ.

## 881

Туçа вăрманĕ урлă эпĕр карчăкпа çĕрле лашапа сăра ĕçмерен таврăнатпăр. Ун пек-кун пек çинчен нимĕн те шухăшламан. Пăхатăп: йывăç çинче пĕр çурта çунса лара парать. Карчăка хулĕнчен кăлт! тĕртрĕм те:

— Пăх-ха, карчăк, — терĕм.

Хайхи пирĕн хыçра:

— Пăх-ха, карчăк! Пăх-ха, карчăк! — теме пуçларĕ те вăрмантан тухиччене ăсатса ячĕ.

Туҫа вӑрманӗнче Арҫури пур теҫҫӗ ҫав унта. Тата час-часах лаша тӑварса ярать теҫҫӗ: лашапа чипер пынӑ чух пӗкки вӑрттах сирпӗнсе каять. Ҫӑкӑр-тӑвар тавраш парне памасӑр та лашана ниепле те кӳлме май килмест теҫҫӗ.

## 882

Арҫури вӑл качча кайман хӗртен ҫуралнӑ тет. Хӗр ачана ҫуралсанах вӑрмана кайса пӑрахнӑ, ҫавна пытармасӑрах пӑрахса хӑварнӑ, вара ҫав ачаран Арҫури пулса кайнӑ. Арҫури юриех, ҫынсене курсан, вӑрман хӗррине пырса тӑрать тет. Вара иртсе каякана ҫыннӑн ячӗпе кӑшкӑрать е палланӑ ҫын сассине кӑларать. Вара ҫын хӑех ӑна хирӗҫ кӗрет. Арҫури ҫынна кӑтӑклама пуҫлать, кӑтӑкласа вӗлерет те ҫисе ярать.

Арҫури питӗ хытӑ макӑрма пӗлет тет. Вӑрмана пыракансене палланӑ ҫын сассипе кӑшкӑрать тет, унтан шӑхӑрать тет, хӑй хыҫҫӑн илӗртсе ҫынсене Арҫурисен шӑтӑкне илсе кӗрет, вара шӑтӑка кӗнӗ ҫынран та Арҫури туса хураҫҫӗ.

Арҫури ҫутӑран питӗ хӑрать тет. Хунарпа ҫутатсан е кӑвайт чӗртсен вӑл кӑшкӑра-кӑшкӑра тарать тет.

Арҫури хуп-хура, яка, кӗске ҫӑмлӑ тет. Пысӑк пуҫлӑ, вӑрӑм кӗлеткеллӗ, икӗ пысӑк симӗс куҫлӑ тет. Питӗ вӑрӑм хӳреллӗ тет. Арҫури вӑл упӑте пекех хӑруш тет.

Арҫурисем ҫырма-ҫатрара, пӗвесемпе кӳлӗсенче нумай пурӑнаҫҫӗ тет. Кӳлле анса каякансем пулсан арҫурисем питӗ савӑнаҫҫӗ тет, ҫав кун вӗсем ӗҫсе ҫиеҫҫӗ, уяв тӑваҫҫӗ тет. Анса кайнӑ ҫын чунӗнчен те Арҫури пулса тӑрать тет.

Пӗр чӑваш хӗрарӑмӗ уйра тырӑ вырнӑ. Ачине ана вӗҫне сӑпкана вырттарнӑ. Ачи питӗ хытӑ кӑшкӑрса макӑрать тет. Арҫури килсе ҫитет те ку ачана улӑштарса илсе каять. Хуп-хура ҫӑмлӑ ача улӑштарса хӑварать.

## 883

Упӑте шӑлшӑн каҫса каять, ҫыннӑн шӑлӗсене кӑларса илет те ачисенӗн мӑйне ҫакать; ҫынна кӑтӑкласа вӗлерет, лаши ҫине утланса чупма юрататать.

## 884

Упӑте ҫап-ҫутӑ пуҫлӑ пӳртсенче тата пушӑ пӳртсенче пурӑнакансене те ерсе аптӑратса пурӑнать. Пӗрре ҫапла пӗр ҫыннӑн икӗ пӳрт пулнӑ тет; пӗр пӳртне Упӑте ернӗ тет. Пӗрре ку ҫын патне упа ташлатакан кӗрсе выртнӑ. Упине ҫак пӳрте выттарчӗҫ тет. Каҫпа Упӑте пырат та упана чис* кӑтӑкласа ӑнтан ярать. Упа сике тӑрат та, кӑна ҫӗклесе ҫапат. Ҫавӑнтанпа вара Упӑте пымарӗ тет.

## 885

Арҫури ҫынна тытсассӑн питӗ кӑтӑклать тет. «Кӑтьти пур-и, кӑтьти пур-и?» — тесе калать. Хӑй кулать-ахӑрать тет.

Арҫурине вӗлерес пулсан ун юн тумламӗсенчен темиҫе Арҫури пулса тӑрать тет. Арҫури никама та тапӑнаймасан питӗ хытӑ ларса макӑрать тет.

---
* Йӑлтах.

## 886

Ĕлĕк вăрмансенче упăтесем нумайййан пурăннă тет. Вĕсем вăрмантан çынсене курсан хăваланă тет.

— Катти пар, катти пар! — тесе макăрнă тет.

«Катти» пулмасан çыннăн шăлĕсене кăларса илнĕ тет те шатăртаттарса çинĕ тет.

Çапла пĕррехинче икĕ çын вăрмана вутă хатĕрлеме кайнă тет. Кусене шăп та упăтесем тĕл пулаççĕ тет. Çынсем иккĕшĕ те шăлĕсене кăларса илесрен хăраса пĕр хăвăла икĕ енчен пусĕсене чиксе хучĕç тет. Унччен те пулмарĕ тет — хайхи упăтесем чупса та çитрĕç тет. Хăвăл йĕри-тавра чупкаларĕç-чупкаларĕç тет: пĕр енне çитеççĕ — урасем, тепĕр енне чупса пыраççĕ — каллех урасем курăнса выртаççĕ тет. Юлашкинчен:

— Пулать те иккен этем ик кутлă, — тесе лач! сурчĕç тет те кайрĕç тет вара пăрăнса.

## 887

Арçури çинчен тата ак çапла калаçаççĕ. Вăл вăрманта пурăнать тет. Вăл Арçури çынна курсассăн шăла кăларса илет теççĕ. Калаçма та çын пекех калаçать теççĕ. Вăрманта çӳренĕ чух çыннăн ятне те пĕлет теççĕ. Пирĕн вулăсра пĕр Туçа ятлă ял пур, ĕлĕк çав ял таврашĕнче çак Арçури выльăхĕсене пĕрмай ăрсарит туса çӳренĕ тет. Çакна ялпа тумит тунă та сыхласа тăрса чĕрлех тытнă тет. Тытнă та пĕр лаша çине сăмала сĕрсе утлантарнă тет, вăл выльăх пек питĕ çăмлă тет. Çăмлăскер çыпăçса ларнă тет те ниçта та каяйман тет, ăна вара кутăн утлантарнă тет, лашине янă тет ирĕкех, лаши вара исе кĕнĕ тет ял хушшинех, ăна вара ялпала вĕлернĕ тет, вĕлернĕ чухне аларĕ тет: «Çак Туçа çичĕ хут ăшша кайтăр»*, — тесе каланă тет. Чăнах та, çав Туçа çичĕ хутчен ăшша кайрĕ тет.

Арçурин икĕ ывăл – Якурипе Кĕркури пулнă. Пĕррехинче Арçури икĕ ывăлне ертет те пĕр ял витĕр таçта кайма тухать. Пĕр киле кĕрсе ирхи апат тума шутланă. Арçури телейне, хуçа арăмĕ кăмакине чĕртет те хăй вутти çуннă вăхăтра кăштах выртса канма шутлать — çывăрсах каять. Арçури хĕрарăм çывăрнине курса хуран айне чĕртет те пăтă пĕçерет. Çав вăхăтра хĕрарăм вăранать те вăрттăн сăнаса выртать. Арçури пăтта сĕтел çине антарса лартать те (ачисем урама выляма тухнă пулнă ĕнтĕ ун) ачисене чĕнме тухать. Вара хĕрарăм майĕпен тăрать те алăкне питĕрсе хурать. Арçури ачисене: «Якури, Кĕркури, çуллă пăтă çиме килĕр!» — тесе кăшкăрать. Якурипе Кĕркури килсен кĕме тытăнаç те кĕрейместĕ, шаккаççĕ — хуçа арăмĕ уçмасть. Вара Арçури тытăнать тет вăрçма: «Вутту çунать шартлатса, ху çывăран харлатса, намăссăр ам-ам çури, кĕрт йытти!» — тесе вăрçать тет. Якурипе Кĕркурин çуллă пăтă çиеймесĕрех кайма тивнĕ тет.

## 888

Арçури ял патне пынă тет те яла кĕме хăраса тăрат тет. Малтан ыйтса пĕлет:

— Нарт-нарт пур-и? — тесе ыйтат (купăс пур-и тенине пĕлтернĕ). Пур тесен савăнат тет, кулат тет.

---

* Çунса кайтăр.

— Хав-хав пур-и? — тесе ыйтат тет (йытти ĕнтĕ «хав-хав»). Çук тесен савăнат тет, пур тесен тарат тет.

— Çук, — тесе каланă тет.

— Чăвваш-чăвваш пур-и? — тесе ыйтат тет. (Чăпкăркка пур-и тесе ыйтат.) Çук тесен каймас, лăх-лăх кулат тет.

Ăна тата ак çапла тунă. Арçури шав тухат та тихасем çине утланса çӳрет иккен. Ĕлĕк лаша кĕтӳ кĕтнĕ. Тиха çурăмне тикĕт сĕрсе яраççĕ те, ку хăпарса ларат. Ларат та çыпăçат кучĕпе тиха çумне, хăпăнаймас. Ăна тиха каллех лартса килет. Эх, килет тет кăшкăрса, юрласа:

— Хире тухрăм — хир кулли, яла кĕтĕм — ял кулли! — тесе кăшкăрат тет вăтаннипе.

Çав арçурисем хĕрарăм пек курăннă, кăкăрĕсем вĕсен вăрăм пулнă, хулпуççи урлă ытса яраççĕ тет те кăкăра чупаççĕ тет вара вăрманалла. Çынпа тĕл пулсан хăй аякра тăрат тет, çывăха ямас тет çынна. Хăй кулса тăрат тет, хайне вăрçтарсан кăтăкласа вĕлерет тет çынна.

## 889

Арçурисене куракансем ĕлĕк-авал чăнах та нумайччĕ. Халь арçурисем питех ашкăнмаççĕ çав. Çынсем умне тухса чарăнни çинчен çапла калаççĕ ăна.

Вăрманта çынсем тĕренче чĕрнĕ. Пĕр Арçури çавсене курса таçтан аякран ахăлтатса кĕçенсе килет тет ясар арăм пек. Çӳçĕсем лаша хӳринчен вăрăм, пысăк кĕлте пек тет, тата кăкăрĕсем ĕне çиллинчен пысăк тет. Хăй:

— Каття пур-и? Каття пар! — тесе çухăрать тет.

Вара çынсем пĕр хулăн тĕренчене савăлпала уйăрнă та:

— Ак кунта каття! — тесе аллине чикме хушнă.

Леш аллине чиксен савăла туртса илеççĕ те — эх, хĕстерсе тет аллине. Йыттисене вăслатаççĕ. Çураç тет лешсем тире, тĕкĕ кăна тусать тет. Савăла тепĕр хут çапсан вут пек пĕрхĕнчĕ тет вара.

## 890

Çав Кивçурт вăрманĕ патне эпир кашни каçах лаша çитерме каяппăрччĕ. Каç полсан вуртса çураппăрччĕ. Ирхине тăраппăр та, пен лашасем йĕпйĕпе тара ӳкнĕ. Ара, кам утланса чупнă-ши теппĕр. Çапла хирĕçсе пĕтрĕмĕр ĕнтĕ. Çан пек темиçе кон иртрĕ. Йолашкинчен шотларăмăр: тавай утсене сăмала сĕрес. Но, халь пĕр лашине сăмала сĕрсе ятăмăр та хамăр вуртса çуртăмăр. Тăраппăр та пăхаппăр. Пен лаша çине, оказывается, Опăтя хăпарса ларнă. Хайхи сăмала çине çыпăçса ларнă та никак ойрăлимаç.

«Пăй енчен ойăяп та, ойăймаç, тепĕй енчен ойăяп та, ойăймаç», — тет Опăти.

## 891

Пĕрисен лаши выртмаран (çĕрле çитерме кăларса ярсан) пĕрмаях йĕпйĕпе тарласа таврăнать тет. «Кам хăваласа çӳрет-ха ман лашана çĕрĕпе?» — тесе шухăшлать тет хуçи. Çак лаша çурăмĕ çине тикĕт сĕрсе ячĕ тет хуçи пĕр каçхине. Лаша çине Арçури утланса чуптарса çӳренĕ пулнă. Хальхинче те Арçурийĕ утланчĕ тет те эх! хăвалать тет лашана. Ир енне лаши тапса

сикрӗ тет, вӗҫтерсе пырать тет ялалла. Арҫури анса юласшӑн тет, хӑпаймасть тет. «Ялах ҫитеп вӗт ӗнтӗ, яла ҫитсен ял кулли, — тесе калать тет. — Кутьтине хӑпӑтап, альли ҫыпҫать, альлине хӑпӑтап, кутьти ҫыпҫать, — ах, ял кулли, ял кулли», — тесе макӑрать тет. Лаши ял хапхи патне ҫитсен уҫӑ хапхаран ялт! анчах кӗрсе кайрӗ тет, Арҫури хапха каштине перӗнсе палт! ӳксе юлчӗ тет. Эх, тарчӗ тет вӑрманалла вара. Урӑх нихҫан та лаша ҫине лармарӗ тет.

## 892

Ӗлӗк лашасене ял патӗнчи вӑрмана, Меметере, янӑ. Ялти пӗр Семенкке ятлӑ ҫыннӑн лаши кашни ирех йӗп-йӗпе тарласа таврӑнать. Лаша хоҫи шотлать: «Мӗншӗн-ха ман лаша яланах тарлать? Мӗн тоса пӑхмалла-ши?» — тесе.

Пӗррехинче вӑл лашине тикӗт сӗрсе ярать. Ирпеле лаши таврӑнать, лаша ҫурӑмӗ ҫинче Арҫури лара парать. Хӑй ҫапла калать: «Ах, Семенкке, ял колли. Алли ойлать*, котти ҫыпҫать, котти ойлать, алли ҫыпҫать». Темиҫе хут та ҫапла каласа ял тавра чупса ҫаврӑнчӗ тет. Семенкке вара ал туйи илет те виҫӗ хутчен ҫаптарать. Арҫури аран-аран тарса хӑтӑлать. Ҫакӑн хыҫҫӑн Арҫури нихҫан та лашасем ҫывӑхне пыман.

## 893

Лаши ҫинче кам утланса ҫӳренине пӗлес тесе хуҫи лаша ҫурӑмӗ ҫине сӑмала сӗрсе янӑ.

Тепӗр кунхине хуҫи лаши киле таврӑннине сыхласа тӑрать. Катаранах лаша ҫинче такам ларнине курать. Патнерех ҫитсессӗн хуҫи лаша ҫинче Арҫури ларнине курах каять. Арҫурийӗ хӑй тем пӑшӑлтатать тет: «Аляҫки, улӑҫки, каҫаҫки, ҫыпӑҫки. Каҫаҫки улӑҫки, аляҫки, ҫыпӑҫки. Аляҫки, улӑҫки, каҫаҫки, ҫыпӑҫки. Каҫаҫки, улӑҫки, аляҫки, ҫыпӑҫки...»

Ҫав Арҫури лаша ҫумӗнчен нимӗнле те уйрӑлса каяймасть тет. Пӗрре аллине уйӑрать тет те, кучӗ ҫыпӑҫса ларать тет. Кутне уйӑрать тет те, аллисем ҫыпӑҫса лараҫҫӗ тет. Хуҫисем вара ҫав Арҫурине лаша ҫумӗнчен уйӑрса янӑ тет.

Ҫавӑн хыҫҫӑн Арҫури пӗрре те курӑнман тет. Лаши те каҫпа чиперех таврӑнать тет.

## 894

Пирӗн ялта пӗр Ишпара ятлӑ пуян ҫын лаша нумай тытнӑ. Пӗррехинче вӑл лашасене вӑрмана кӑларса ярать. Тепӗр кунне пӑхать — чи лайӑх лаши лачкам тара ӳксе вилес пек выҫӑ таврӑнать. Ик-виҫ кун ҫапла пӗр лаша ялан выҫӑ супса таврӑнать.

— Мӗнле ку капла? — тӗлӗнсе каять Ишпара. — Ытти лашасем чипчиперех тӑранса таврӑнаҫҫӗ, ак ку ма капла супса таврӑнать?

Ватӑсемпе пуплет те, вӗсем куна лаша ҫурӑмӗ ҫине сӑмала сӗрсе яма хушаҫҫӗ. Ишпара ҫавнашкал хӑтланса пӑхать: лаша ҫурӑмӗ ҫине сӑмала сӗрсе ярать.

---

* Уйрӑлать.

Тепĕр ир лаши вăрмантан сиккипе чупса килет. Çурăмĕ çине Упăте çыпăçса ларнă тет. Ак ку Упăте тархаслать тет Ишпарана:

Ах, Ишпара, Ишпара,
Куттине тĕкрĕм — кутти çыпăçрĕ,
Аллине тĕртрĕм — алли çыпăçрĕ.
Яр, тархасшăн, Ишпара,
Текех апла ашкăнмас, —

тесе йăлăнать тет.

Ишпара вăйлă кăна çаптарнă та Упăтене, каялла вăрмана тарнă вăл Упăте. Урăх курман вара ăна.

## 895

Пĕр çын вăрмана лашине кайса янă тет. Вăрманта çиме пит аван пулнă тет. Çын килелле кайсанах вăрмантан Арçури тухнă тет те лашана утланса кустарса çӳренĕ тет. Лаша каçхине хуп-хура шыва ӳксе таврăннă тет. Хырăмĕ çатан (е кĕççе) пек пĕрĕннĕ тет. Çын тепĕр кун та çавăнтах кайса янă тет, анчах хăй вăрман (йывăç) айне выртса лашине куçласа тăнă тет. Пычĕ тет лаша патне Арçури, утланчĕ тет те лаша çине ну кустарса çӳрет тет. Çын лашине вăрмана хăварса киле таврăнчĕ тет те ват çынсене каласа пачĕ тет. Ват çынсем ăна лашин утланакан вырăнне сăмалапа сĕрсе яма шухăш пачĕç тет. Тепĕр кун çын лашин утланакан çĕрне сăмалапа сĕрсе ярать. Арçури малтанхи пекех лаша çине утланчĕ тет те кустарса çӳрерĕ тет. Каç пулсан Арçури лаша çинчен анма пикенчĕ тет, анчах кучĕ çыпăçса кайнă тет. Лаша килелле ута пуçларĕ тет. Хире тухрĕç тет. Арçури çул тăрăх: «Хире тухсан хир кулли, яла кĕрсен ял кулли!» — тесе макăрать тет. Арçури макăрнине итлеме пĕтĕм ял пухăнчĕ тет. Лаша хуçи лаши картишне кĕрсен Арçурине лаша çурăмĕ çинчен антарчĕ тет те хӳринчен тытса тикĕтленĕ пушăпа кутĕнчен: «Ан утлан, ан утлан ӳлĕмрен лаша çине!» — тесе çаптарчĕ тет. Арçурин çавăнтан вара лаша çине утлану пулмарĕ тет.

## 896

Ĕлĕк лашасем кашниннех пулнă. Ачасене вара выртмана янă тет. Çапла выртмана кайсан кăшин лашине те пулин Арçури вăрласа каять тет. Арçурийĕ çĕрĕпе чупать-чупать те ирхине килсе ярать тет. Çынсем аптăраса çитнĕ çапла. Лаша лачкам тар, ывăнса çитнĕ тет. Çак лашапах суха тумалла пулать-çке-ха. Çапла вара лаша хуçи Михаля хăйĕн лаши çине сăмала сĕрет те хурать. Арçури шăпах çав лаша çине утланса ларать тет те чупать çĕрĕпе. Тул çутăлас умĕн анма тăрать те анаймасть. Кучĕ çыпăçса ларнă тет. Тул çутăлса çитет, куна çынсем çавăрса илеççĕ. Арçурийĕ: «Аллипе пусап та, алли çыпăçса ларать, коттипе пусап та, котти çыпăçса ларать», — тесе макăрса ларать тет. Çав хушăрах çӳлелле пăхать те, унта уйăх çутатать тет. «Хоть свети луна, хоть не свети луна, тин эп ниçта та каймас», — тесе калать тет. Вара лаша хуçи Арçурине хĕрхенсе лаша çинчен антарса вăрмана ярать тет. Çакăнтан вара Арçури лашасем çине утланса чупма пăрахрĕ тет.

## 897

Пĕррехинче пирĕн пата поскил* пычĕ те çапла каласа пачĕ.

«...Ĕлĕк эпир лашасене ĕç хыççăн вăрмана кайса ярттăмăрччĕ. Ирхине кайса илсе килеттĕмĕр. Халь ĕнтĕ икĕ кон асăрхатăп, ман лаша йĕп-йĕпе таврăнать. Тепĕр каçхине вара выртмана хам кайрăм. Лашана ятăм та вăрттăн сыхласа тăтăм. Лаша çисе çӳрет. Асăрхатăп: çур çĕр тĕлнелле ман лаша çине Опăтя утланса ларнă та кайла-майла чуптарать кăна. Тарăхса карăм та, анчах нимех те тăваймарăм. Опăтя кăвак шуçăм килеспе лаша çинчен анчĕ те кăвайт патне кайрĕ. Унта ăшăннă хыççăн таçта çухалчĕ. Ман лаша каллех йĕп-йĕпе. Ĕç хыççăн вăрмана хам кайрăм. Лаша çорăмĕ çине сăмала сĕртĕм. Хам вот чĕртсе çĕмĕрт холлисем хатĕрлерĕм, вĕсене кăшт вот çине хотăм. Пăхатăп та каллех çур çĕр тĕлĕнче: ман лаша çинче Опăтя ларать. Кăвак шоçăм килеспе Опăтя анма шотларĕ полмалла. Анчах сăмалапа çыпçăнса ларнă. Опăтя макăра поçларĕ:

— Ори те çыпăçать, алли те çыпăçать, — тесе макăрать.

Халь эпĕ çĕмĕрт холă вот ăшĕнчен тортса кăлартăм та чарăш! тутартăм.

Çакăнтан вара опăтясем утсем çине утланмарĕç.

## 898

Арçури чĕрĕпе курнă та тĕлĕнсе кайнă. «Пусăки те çук, кучăки те çук. Манăнни пек хӳри те çук, мĕскĕн!» — тесе мăн кăмăллăн кăна урипе тапнă. Тапнă та çухăрса янă. Çавăнтанпа арçурисем вăрманта çухăрса çӳреççĕ.

## 899

Пирĕн ял тавра ĕлĕк-авал сĕм вăрман кашланă. Унта Михетертен пулса кайнă Арçури алхаснă. «Мĕнле тытса вĕтес куна?» — пуç ватнă ватăсем.

Çамрăксем аптраса тăман. Лаша çурăмĕ çине сухăр сĕрнĕ те вăрмана янă. Арçури лаша çине утланать те çил пек ыткăнса çӳреме пуçлать.

Каç пулсан лаша киле таврăнать. Арçури анма тăрать — анаймасть, çыпăçса ларнă. Аллине тытса уйăрасшăн — алли çыпçăнать. Лаши-качкипех пырса кĕрет яла Арçури.

Çамрăксем çакна çеç кĕтнĕ. Эх, туртаççĕ пушăпа, эх, хĕнеççĕ! Çухăрать тет Арçури. Лаша çинчен уйăрчĕç тет те илсе кайса хупрĕç тет куна витене. Каçхине, сивĕтсен, ку ӳлеме тапратрĕ тет. Пӳрте илсе кĕчĕç тет куна.

Ирхине çак çынсем патне сăхман çĕлеме çĕвĕç пычĕ тет. Пӳртре çĕвĕçпе Арçури çеç тет. Арçури сентре çинче пăхса выртать тет. Çĕвĕç çĕлесе пĕтерчĕ тет те хаччине илсе чĕрнисене касрĕ тет. Кайран тула тухрĕ тет. Арçурин те чĕрне касас килнĕ. Чалт! сиксе анать те ку ярса тытать хачча, пĕтĕм пӳрнине касса тăкать. Эй, çухăрать тет, пӳртре çурт чĕтресе çеç тăрать тет. Каллех хăпарса выртрĕ тет сентри çине.

Пӳрте кил хуçи арăмĕ кĕчĕ тет те вучахри яшкана тăвар ярса çăпалапа

---

* Кӳршĕ.

пăтратрĕ тет. Куна Арçури пăхса выртрĕ тет. Хĕрарăм пўртрен тухсанах сиксе анчĕ тет те сулланчăкри пĕтĕм тăвара яра пачĕ тет яшкана, вара аллипе пăтратма тăчĕ тет. Тухса сирпĕнчĕ тет пўртрен тем пулнă пек. Тек вара çынсен куçĕ умне курăнмарĕ тет нихăçан та. Аякран çеç ахăрса, тĕпĕртетсе çўрерĕ тет.

Çапла вĕрентрĕç тет Арçурине.

### 900

Ёлĕк, колхозсем пулман чухне, кашни килтех лаша пулнă. Лашасене уя калча çиме янă. Лашасем вара пĕрмаях йĕп-йĕпе пулса килнĕ тет. «Çын çапла тăвать-ши?» — тесе шухăшлаççĕ тет. Вара лашасене чуптараканни çыпăçса килтĕр тесе лаша çурăмне тикĕт сĕрсе яраççĕ тет. Кайран лаша çумне Арçури çыпăçса килнĕ тет. «Мĕн тумалла кунпа?» — тесе шухăшлаççĕ тет. Вара пура ăшĕнче çунтарса яма шут тытаççĕ тет. Арçурийĕ: «Çак ялта хĕр ача ўстĕр те ялтан тухса кайтăр, арçын ачи пултăр та киле кайса кĕтĕр, — тесе калать тет. — Эх, ялĕсем, ялĕсем, йăмра лартса тултарнă», — тесе шав калать тет хăй. Çунма пуçласассăн пĕр енчен ухма тытăнать тет те — сенĕкпе чикеççĕ, тепĕр енчен ухма тытăнать тет те — каллех чикеççĕ тет. Вара Арçурине çунтарса янă тет. Кун хыççăн лашасем тинех чипер çўреме пуçланă тет.

### 901

Оптене вĕлернĕ ялта çын ăнмасть тет; çавăн пик пĕр çын лашине вăрмана çиме кая-кая янă тет; тулькке лаши кашни кон йĕп-йĕпе полса киле таврăнать тет. Лаша хуçи лаши çине ытланса çўресе тарлаттарнине илтет те пĕр ирхине лашине тикĕтпе варласа ярать тет. Опте лаша киле таврăннине корать те каллах, хальччинхи пик, лаша çине ытланать тет. Яла çитерехпе Опте анса тарасшăн тет. Лаша çинчен тапранса пăхать тет, кочĕ тикĕтлĕ, лаша çомне çыпçăнса ларнă тет те, Опте лаша çинчен анаймарĕ тет. Опте анасшăн торткаланнă майĕпе, лаши пит чупса яла персе çитрĕ тет. Çынсĕм Опте çыпăçса таврăннине кураççĕ те лаша хыççăн хуçи патне кайса Оптене вĕлерчĕç тет. Çавăнтанпа çав ялта çын пĕр те хотшăнмас тет ĕнтĕ.

### 902

Пĕр ялта Сикун текен çын пурăннă. Унăн лаши пит илемлĕ пулнă, ăна вăл яланах улăха курăк çиме янă тет. Пĕррехинче Сикун лаши питĕ тарланине, ывăннине асăрхать. Çакăн пек пĕр темиçе пулса иртнĕ. Юлашкинчен Сикун лашине сыхла пуçлать. Пĕррехинче вара, хĕвел анса ларсассăн, вăл хăй лаши çинче Арçури ларнине курать, вăл лашана питĕ хытă хăвалать те кайран, ывăнса çитсен, ярать. Тепĕр кунне Сикун лаши çине тикĕт сĕрет, вара çитерме ярать. Кайран, лаши килне таврăнсан, ун çинче Арçури ларнине курать. Вара ăна унтан илет те нўхрепе ярать. Вара вăл çавăнтах вилнĕ тет. Арçури мĕн виличченех Сикуна питĕ ылханнă тет, çавăнпа Сикунăн лаши те, хăй те чылаях пурăнман тет, Арçури вилнĕ хыççăн часах вилнĕ тет.

## 903

Пĕр чухăнăн лаша пулнă тет. Вăл каçхине лашине уя çиме янă тет. Ирхине килсе пăхать тет те, лаша йĕп-йĕпе тар тăрать тет. Тепĕр каçхине те çавăн пекех йĕп-йĕпе тет.

Çак чухăн тепĕр каçхине лаша çурăмĕ çине сăмала сĕрсе ячĕ тет. Çав лашапа Шуйттан чупнă пулнă тет. Хайхи Шуйттан çав лашапа яла пырса кĕчĕ тет. Шуйттан: «Кутяккипе ларап — кутякки çыпăçать, аллипе пусап — алли çыпăçать!» — тесе яла кăшкăрса кĕчĕ тет.

Çак Шуйттана çынсем тытрĕç тет те ватрĕç тет. «Çак Юлăм ялĕнче çӳрен лаша ан пултăр, вĕреннĕ çын ан пултăр», — тесе хăварнă тет.

## 904

Пушмак ялĕ (халĕ вăл Вăрманкас ялĕн пĕр урамĕ çеç) пĕчĕк ял пулнă, вăл çичĕ çемьерен ниепле те иртеймен.

Вăл çапла пулнă. Ял ĕлĕк вăрман варринче ларнă. Вăрмансем пахчаран тухсанах тытăннă. Вăрмансенче тĕрлĕрен тискер кайăксем, упăтесем нумай пурăннă. Çынсем ĕçрен таврăнсан лашисене курăк çиме вăрмана янă тет, лашисем выççипех йĕпе тара ӳксе киле таврăннă тет. Çынсем лашисене кам ĕшентерннине пĕлме шутланă, лашисен çурăмĕсем çине сăмала сĕрсе янă. Çапла тунă та ирхине лашасем таврăннине сыхланă. Пăхаççĕ тет — пĕр лаша çинче Упăте ларса килет тет:

Аллипе пусап — алли çыпăçать,
Тяппипе пусап — тяппи çыпăçать,
Куттипе пусап — кутти çыпăçать, —

тесе. Вара çынсем Упăтене хура тăла татăкки пачĕç тет, çавна сурчăкпа шап-шурă çуса тасатма хушрĕç тет, çак ĕçе пурнăçласан ирĕке яма пулчĕç тет. Упăте тытăнчĕ тет шуратма: сурать тет, йăвалать тет, сурать-сурать, йăвалать тет, ниепле те шуратаймасть тет. Вара Упăте хурланса макăрма тытăнчĕ тет, ял çыннисене ылханса юрлать тет:

Пи Пушмак, пи Пушмак,
Çичĕ килтен ан иртгĕр,
Виç арçынтан ан ирттĕр!

Çавăнтан вара, чăнах, Пушмак ялĕ çич килтен иртмен, виç арçынтан иртмен тет.

Кайран Пушмак ялĕ Вăрманкас ялĕпе пĕрлешнĕ, ял çыннисем чиперех пурăнма пуçланă.

## 905

Çынсем: «Кĕлпуç ялĕ нихăçан та пуяс çук», — теççĕ. Ĕлĕк пĕр пуян çыннăн лаши çинче Маймăл утланса чупма вĕреннĕ тет. Çав пуян ăна сиснĕ те лашине сăмалапа вараласа кĕтĕве янă тет. Хай вара тепĕр кунне ирхине кĕтӳпе пĕрле таврăнчĕ тет, лаши çине Маймăл утланса ларнă тет, анчах Маймăл лашаран нимĕнле те уйрăлаймасть тет. Вара çынсем пухăннă тет те Маймăла лаша çинчен пĕр пӳрт пурине ярса çунтарса янă тет. Маймăл çунса вилес умĕн çапла каласа хăварнă тет: «Сирĕн ял малалла ан кайтăр», — тенĕ тет. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн ялта пуянсем çук теççĕ.

## 906

Тĕлтекепе Иштерек иккĕшĕ те пĕчĕккĕ, хисепсĕр ялсем. Вĕсенче ĕлĕкренпех этем ĕрчемест, хунамасть теççĕ. Тĕлтекере — тăхăр кил, Иштерекре — вун виçĕ кил. Çав ялсенче этем мĕншĕн хунаманни çинчен ват çынсем ак çапла пуплеççĕ.

Çав ялсем çывăхĕнче ĕлĕк упăтесем пурăннă теççĕ. Çав упăтесем çав ик ял лашисене вăрмана е уя ярсан утланса çӳресе йăлт суптарнă, ывăнтарнă. Хăш-хăш чухне лашисем чăм шыва ӳксе хуп-хура тарлă таврăннă. Вĕсем ялан та пĕрех лаша çине утланса çӳренĕ. Лаша хуçисем нимĕн тума та аптранă. Упăтесене ниепле те тытма май килмен. Юлашкинчен вара ак çапла ăс, май тупнă теççĕ.

Упăтесем аптăратнă лашасен çурăмĕсем (каçанĕсем) çине лапкăшпех сăмала çыпăçтарса янă. Хай упăтесем, чăнах та, лашасем çумне çыпăçса яла утланса ларса таврăннă. Вара пĕтĕм ял-йыш пухăнса çав упăтесене пит асаплă вилĕмпе вĕлернĕ теççĕ. Упăтесем мĕн чухлĕ тархасласа тилмĕрсен те хĕрхенмен вĕсене. Анчах çав ĕç (упăтесене вĕлерессi) кирлĕ ĕç пулман: упăтесем вилес умĕн пит чунтан тарăхса çав ялсен халăхĕсене: «Çак ялсенче ĕмĕрне те çавăн чул килтен, çавăн чул çынтан ан иртгĕр», — тесе ылханнă теççĕ. Çавăнтанпа ĕнтĕ çав ялсенче этем ĕрчемест, хутшăнмасть теççĕ.

## 907

Пĕррехинче Упăтене питĕ тарăхтарнă тет Çӳлтикасси çыннисем. Упăте уй хапхи тăррине улăхса ларнă тет те калать тет: «Çак ялта пурпĕрех 70 килтен ытлашши пулмасть», — тесе. Чăнах та, çав ялта 70 килтен ытлашши мар тет, ытлашши пулсан та хутте мĕнле инкек сиксе тухать е çунтарса ярать тет.

## 908

Карачура ялĕ пысăках мар, çĕр кил ытларах. Пĕр тӳрĕ урам. Çынсем пĕр-пĕринпе калаçнă чух Тури е Анатри урам тесе калаççĕ. Унсăр пуçне тата Лешекки* ятлă урам пур. Унта 10 килрен ытла мар çурт-йĕр. Вăл урам пирки çапларах юмах çӳрет. Ĕлĕк тахçан пĕр çыннăнне Шуйттан лашине вăрласа катаччи чупма вĕреннĕ тет, хуçи ир тăрса тухнă çĕре лаши витере йĕп-йĕпе тарласа тăнă тет. Хальхи** лаша хуçи ку вăрра мĕнле тытас-ши тесе лашин çурăмне сăмала сĕрсе ярать тет те витене хупса хурать тет. Хальхи Шуйттан каç пулсан каллех витене пырать тет те утланса тухса каять тет. Ярăнсан-ярăнсан каялла пырать тет. Анма тăрать — анаймасть, сăмала çумне çыпçăнса ларнă тет. «Аллине илеп те, патти çыпçăнать», — тесе такмаклать тет хăй. Хальхи лаша хуçи Шуйттана питĕ çунтарать тет пушăпа. Аран уйрăлса тарать тет Шуйттанĕ. Тарнă чухне: «Вун икĕ килтен ан иртгĕр, вун икĕ килтен ан иртгĕр», — тесе чупать тет. Çавăнтанпа çав урам ниепле те 12 килтен ытла иртеймест тет. Чăнах та, халь унта шăп та лăп 12 кил.

---

* Леш айкки.
** Хайхи.

## 909

Ял йĕри-таврa вăрман пулнă тет. Вăрманта темĕн тĕрлĕ те тискер чĕр чунсем çӳренĕ.

Ял çыннисем кашни каçах лашасене çак вăрмана уçланка янă тет. Пĕрисен лаши яланах чăм шыва ӳкет. Пĕррехинче çакна тĕрĕслеме шутлаççĕ. Лаша çурăмĕ çине сăмала сĕрсе яраççĕ. Ирхине лаша çине утланнă Упăте килсе кĕрет тет. Кăна туртса антараççĕ те пĕр пура ăшне хупса çунтараççĕ. Вара Упăте: «Кашни çирĕм çултан çунтăр çак урам», — тенĕ. Çавăнпа Тукас урамĕ кашни 20 çултан çунса пынă тет.

## 910

Пĕр 200 çул каялла Кивĕ Шелттем ялĕнче упăтесем пурăннă. Йĕри-таврa вăрман пулнипе-и, темшĕн çав тери упăте ĕрчесе кайнă.

Упăте çынсен лашисем çине утланса чупнă. Йĕп-йĕпе тара ӳкернĕ лашасене. Ял çыннисем тарăхсах çитнĕ. Мĕн тумалла?

Вара пĕри шухăш тупать. Çунтарса ярас ку шуйттана тет. Ял хыçĕнче пĕр çĕрĕк мунча ларнă. Ял çыннисем шухăшланине тума Упăтене тытмалла. Пĕррехинче кашни лашин çурăмĕсем çине тикĕт сĕрсе хураççĕ. Упăте килсе ларать те хăпаймасть. Çынсем пытанса тăнă пулнă. «Кутти хăпать, алли хăпмасть, алли хăпать, кутти хăпмасть», — тет тарăхнă Упăте. Çынсем тытаççĕ те мунчана хупса хураççĕ. Мунчана чĕртсе ярсан Упăте калать: «Çак ял çичĕ хут çунтăр», — тет.

Чăннипех те, çавăн хыççăн ялта пушар хыççăн пушар пулать. Ялти халăх хăранипе вăрман варрине куçма тытăнать. Вара çав яла Çĕнĕ Шелттем тесе ят параççĕ.

## 911

Кив Шелттемре лаша кĕтӳне вăрмана янă тет кашни каç. Пĕр лаши ялан йĕп-йĕпе тарласа таврăнать тет. Лаша хуçисем сăнаса тăрса ăна Упăте утланса хăваласа çӳренине асăрхаççĕ. Кусем шутлаççĕ: сразу хупăрласа илсе яла хăваласа кĕртес теççĕ. Лаша çине смала сĕрсе яраççĕ. Хай Упăте лаша çурăмĕ çине çыпçăнать ларать.

— Кучĕ хăпать, альли хăпмасть, альли хăпать, кучĕ хăпмасть, — тесе йĕрет тет.

Çаплипех яла çитсе кĕрет тет. Упăтине хăйпăтса илеç тет те пĕр виç кĕтеслĕ пушă пурана яраççĕ тет. Пурине вут чĕртсе яраççĕ тет. Çунса каяс умĕн Упăти: «Çак ял çичĕ хут çунса çичĕ хут çурт ларттăр!» — тесе каларĕ тет. Çак ял вара чăнах та çичĕ хут çуннă тет. Пит çуннипе хăш-пĕрисем ялтан уйрăлса тухаççĕ тет те Вăрăм шывĕн тепĕр енне ларса çĕнĕ ял туса яраççĕ тет. Çапла Çĕн Шелттем пулса кайнă тет.

## 912

Упа çырми патĕнче Упăте яланах кĕпесем çăватчĕ тет: темĕнле вараланчăк, таса мар кĕпене те чăлт шурă тăватчĕ тет çуса. Хай вара: «Чăкăт пек шурă тăватăп», — тесе мухтанса çӳретчĕ тет.

Пĕррехинче Пĕчĕк Карачура çынни Упăтерен тăрăхлама шутлать тет:

хура çăмран тĕртсе тунă тăла çума хушать тет Упăтене. Лешĕ çăвать-çăвать тет, ниепле те тасатаймасть тет. Тарăхнипе вара: «Карачура чура пултăр, вун ик килрен ан ирттĕр», — тесе калать тет. Вара çавăнтан нихçан та урăх шыв хĕрне анмасть тет. Упăте ылханнипе ял ниепле те вун ик килтен иртеймен тет. Халĕ вара унта çирĕм тăвата кил.

## 913

Юкьел кĕтĕвĕнчи лашасене Упăте утланса çӳресе ывăнтарнă, хăй ялан та пĕр лашана утланса çӳренĕ. Хуçи лаши çурăмне тикĕт сĕрсе янă. Упăте утланнă та, кучĕ çыпăçса ларнă. Туртăнат, аллипе пусса çĕкленет — алли çыпăçат, кучĕ çине ларса аллине туртат — кучĕ çыпăçат. Вăл вара каланă: «Атьăкки хăпат — кутьăкки çыпăçат, кутьăкки хăпат — атьăкки çыпăçат», — тенĕ. Çапла лаша Упăтене ялах илсе пынă. Ăна вара пуш пурана хупса çунтарнă. Вăл вĕсене ылханса кăшкăрнă: «Юкьел юхăнтăр, Пухтел пухăнтăр!» — тенĕ. Çавăнпа Юкьел халĕ пĕртте ӳсмест, Пухтел ялан ӳссе пырать тет.

## 914

Пĕрре Апашкасси ялĕ çумĕнче, Пăчанар ятлă шыв хĕрринче, улăхра лашасене çитерме выртмалла çӳретпĕр тет. Тĕрлĕрен тискер кайăксем çӳренĕрен каç пулсанах вут чĕртсе, вут çунтарса тул çутăличченех вут хĕрринче ларатпăр тет. Лашасене тискер кайăксем çыхăнсан лашисем кĕçенме пуçлаççĕ тет те вара вутпуççисемпе кăшкăрса чупса эртелпе хăваласа яраттăмăр тет. Вутран пур тискер кайăкĕ те хăратчĕ тет: çĕр вăкăрĕ те, хир сысни те, кашкăрĕ те, упи те. Пĕр ирхине лашасене тытма кайрăмăр тет те шур лашисем йĕп-йĕпе тарласа кăпăкланса тăраççĕ тет. «Мĕн пулнă? Кам хăваланă?» — тесе каççемпе сыхлама пуçларăмăр тет. Хайхискер тухрĕ тет вăрмантан çын евĕрлĕ, анчах питĕ çăмлă Екĕте*, тӳрех шур лаша çине утланса ларчĕ тет те ирчченех пĕри ывăнсан тепĕр лаши çине утланса хăвалать тет, хура лаша çине лармасть тет. «Мĕнле майпа кăна тытас?» — тесе шутлатпăр тет.

Виçĕ каçчен çавăн пек хăваласа лашасене йĕп-йĕпе тара ӳкерет тет те ирхине вара Екĕти вăрмана тарса пытанать тет. Тăваттăмĕш каçхине мĕнпур лашасене сăмала çыпăçтартăмăр тет утланса лармалли вырăна. Хайхи Екĕте чăнах та лаша çумне çыпçăнса ларнă тет. Тытрăмăр тет те сăнăпа чиксе тата патаксемпе çапкаласа Екĕтене вĕлертĕмĕр тет. Тепĕр каçхине каллех шур лашасене чуптарса тара ӳкернĕ тет.

Пĕр Екĕтене виçĕ хутчен тытса вĕлертĕмĕр тет, çапах чĕрĕлет тет те каллех шур лашасене утланса ларса хăваласа аптратать тет. Вара Апаш калать тет: «Тавай юн юхтармасăр пăвса вĕлерес... Юн кăлармасăр вĕлерсен, тен, чĕрĕлмĕ», — терĕ тет. Вара тепре смала çыпăçтарсан каллех шур лаша çине çыпçăнса ларнă тет Екĕти. Пăвса вĕлерессе сиссен: «Çак Апашкасси çирĕм тăвата килтен ытлашши ан хунатăр», — тесе каларĕ тет вилес умĕн Екĕти. Çавăнтан вара урăх чĕрĕлмерĕ тет Екĕте, шур лашасене çĕрле чуптарса ывăнтараканĕ те урăх пулмарĕ тет.

---

* Упăте, арçури.

Чăнах та, темиçе çул хушши ларать тет Апашкасси ялĕ, çирĕм тăватă килтен мала хутшăнмасть тет. Хăш чухне çирĕм пиллĕке е çирĕм ултта çитет тет, таçтан инкек сиксе тухать тет те, тепĕр икĕ кил хупăнса ларать тет.

## 915

Хĕр пуçăн ача тăвса вăрмана кайса пăрахса витмесĕр хăварсан ултав ачи Арçури пулать.

## 916

Çын шăмми те тăпра айне кĕмесен Арçури пулать. Арçури шăмă хыш-лакан кайăкран тарса çӳрет.

## 917

Арçори тона шăннинчен полат.

## 918

Арçури вăл качча кайман хĕртен çуралнă тет. Ăна çав хĕр çуратсанах сĕм вăрмана кайса пăрахнă тет. Вăл вара ӳсе-ӳсе пысăк çын пулса виçĕ юман тăррине улăхса ларнă тет. Унăн сăнĕ тĕм хура, çӳçĕ вăрăм, тăват куçлă тет; куçĕсем иккĕшĕ малта, иккĕшĕ хыçалта тет. Виçĕ алăллă, виçĕ ураллă тет. Çав Арçури вăрманта хăй патĕнчен çын иртсе каякана çыннăн ячĕпех кăшкăрать тет; çынни те ăна хирĕç кăшкăрсан ун патне вăрмана шăтăртаттарса пырать тет те тытса çисе ярать тет.

## 919

Пĕр хĕрарăм çырма хĕррине аннă. Тепĕр çырана хайхи Упăте пырса тухнă.

Ирчинкке, варчинкке,
Ăçтан каçас, Варвари? —

тесе юрлать тет. Упăти вăл хĕрарăмăн ятне пĕлнĕ тет.

Хĕрарăмми хăраса каять, çапах çухалмасть, ăсне пĕлет. Чи тарăн çĕре пӳрнине тăсса кăтартать.

Упăти шыв урлă каçма тăрать те анать каять.

Çавăнтанпа çын пуç тирне сĕвекен упăтесем курăнмаççĕ тет.

## 920

Арçури ĕлĕк чăнах та пулнă тет.

Пĕрре ĕлĕкех хĕрĕпе амăшĕ вăрмана çырлана кайнă тет. Вăрманта çырла нумай тет. Пĕр хурăнлăха кĕчĕç те татаççĕ тет. Ку хĕрĕ, Пасук ятлăскер, татнă чух пуçне çĕклесе пăхрĕ тет те — такам хăйне çырла татса ларнине пăхса тăрать тет, хăй хĕрарăм тет, кăкăрĕсем пысăк, çӳçĕсене арпаштарса янă тет. Хайхи хĕр хăрасах кайрĕ тет, Арçурийĕ пăхсах тăрать тет.

— Анне, анне! Пăх-ха, ку кам вăл? — терĕ тет хĕрĕ.

Амăшĕ Арçури çине пăхрĕ тет, лешĕ кулса кăна тăрать тет. Амăшĕ хĕрне çавăтрĕ те, тарма пуçларĕç тет, чупма йывăр тет. Леш Арçурийĕ икĕ кăкрине икĕ хулпуççи çине ывăтса ячĕ тет те кусене хăвалама пуçларĕ тет, хăй кулать тет, хытă чупать тет. Ку хĕрĕн амăшĕ:

— Тăвалла, тăвалла! — тесе чупать тет.

Арçурийĕ юлчĕ тет, тек чупаймасть тет.

Арçури чупнă е хăваланă чухне ялан çапла: «Тăвалла!» — тесе каламалла тет. Вара ăна чупма йывăр пулать тет.

## 921

Пирĕн ялта пĕр çын, Кăртта, армантан таврăннă. Çул çинче: «Их-ихик!» — тесе кăшкăрнине илтет. Çĕрле, тĕттĕм. Ку хăйне хирĕç арăмĕ тухнă та кăшкăрать пулĕ тенĕ. Вара хăй те кăшкăрнă. Кайран, сасă хăй патне çывхарсан, шикленнĕ те Арçури пулĕ тесе:

— Шыва май, шыва май! — тесе кăшкăрнă.

Ку хăй шыва хирĕç утнă, çавăнпа хăйĕнчен уйăрса ярас тесе «шыва май» тенĕ. Вара Арçури уйрăлса кайнă. Хăй шыва май утать пулсан «шыва хирĕç» тесе каламалла пулнă.

## 922

Кĕркунне. Мăйăр тулса çитнĕ вăхăт. Наçтаç лаша кÿлет те икĕ ачине илсе вăрмана мăйăр пухма каять. Мăйăрĕ нумай пулнипе пуха-пуха вĕсем каç пулса килнине те сисмен.

— Каç пулса килчĕ, — тенĕ амăшĕ. — Киле каяймасан эсир урапа, лаша йĕри-тавра ункă карталăр та ункă варрине тимĕр хĕрес хурса тимĕр ункă варрине ларăр, — тенĕ те хăй вăрманалла кĕрсе кайнă.

Ачасем пуртăпа çĕре касса урапа, лаша йĕри-тавра чĕрсе ункăланă та ункă варрине «тимĕр хĕрес» туса урапа çине улăхса амăшĕ килессе кĕтсе ларнă. Тĕттĕмленнĕ. Ачасем амăшне кĕтсе илеймен. Вĕсем: «Анне!» — тесе кăшкăрнă. Вăрмантан хирĕç сасă илтĕннĕ. Ку анне мар тесе ачасем хирĕç чĕнмен. Вăрманта арçурисем пуль тесе хăраса ÿкнĕ. Вĕсем вырăнтан тапранма та хăранă, çĕрĕпе куç та хупман. Кăвак çутă килсен лаша кĕçеннĕ те, вăрман тискеррĕн шатăртаттарса илнĕ. Ачасем арçурисем тарчĕç тесе ирĕккĕн сывласа илнĕ. Тул çутăлсан ачасем патне амăш те çитнĕ. Вăл вăрманта çухалса çÿренĕ пулнă. Ирхинепе уй хĕррине тухнă та хăй ăçтине тин тавçăрса илнĕ, анчах та калле вăрмана кĕме хăранă. Вăрманта усалсем çул çухатаççĕ тенĕ. Çутăлсан тин ачасем патне çул тытнă.

Çĕр каçипе мĕн пулса иртнине ачасем пĕтĕмпех амăшне каласа панă.

— Арçурисем тимĕр картана кĕреймеççĕ, — тенĕ. — Тата вĕсем вăрманта çул çĕтерсе çÿреççĕ.

## 923

Шуркасси вăрманĕ патĕнче пысăк улăх пур. Нумай çул хушши хуралта ĕçленĕ Сергей мучи çапла каласа пачĕ: «1941 çулччен эпĕ Арçури пĕрре мар курнă. Вăрçă пуçлансан пирĕн пата, Çавал Атăла юхса кĕрекен вырăна, салтаксене илсе кĕчĕç. Вĕсене çапăçма, пăшалтан пеме вĕрентетчĕç. Час-часах граната шартлатса çурăлатчĕ. Çавăн хыççăн арçурисем Атăл леш енне тарса пĕтрĕç çав».

## 924

Пӗрре пирӗн пиччепе юлташ ачи улӑха кайнӑ лашасем ҫитерме. Пӗр 11 сехетчен лашасем ниҫта та тапранмасӑр курӑк ҫирӗҫ тет. Ҫур ҫӗр ҫитес тӗле лашасем хартлатма пуҫларӗҫ тет. Ҫавӑнта лаша тапӑртатнӑ сасӑ илтӗнсе кайрӗ тет. Ҫав сасӑ еннелле пӑхрӑмӑр тет те, мӑйракаллӑскер, сухаллӑскер лаша ҫине утланса ларнӑ тет те лашана кайлӑ-майлӑ пӗтӗрет тет. Кусем ним тума пӗлмесӗр хытса тӑтӑмӑр тет. Ҫавӑнтан манӑн пичче пуҫне асаннесем арҫурисем пилеш хуллисенчен питӗ хӑрани ҫинчен каласа панисем аса килсе кайнӑ. Пичче вара пилеш хулли хуҫса илнӗ те: «Пилеш хулли ҫитерем», — тесе хыҫҫӑн лашапа хӑваланӑ тет. Арҫури вара хӑранипе лашана пӑрахсах тарнӑ тет.

## 925

Ёлӗк ачасем вуртмана утсем ҫитерме ҫӳренӗ. Вуртмана каякан ачасен вӑрман урлӑ каҫмалла пулнӑ. Пӗррехинче вӗсем йывӑҫ кутӗнче Арҫури ҫӑпата туса ларнине курнӑ. Арҫурийӗ: «Ҫвети, ҫвети», — тесе шок-шок шаккать тет.

Ачасем ӑна хыҫалтан пырса пилеш хулӑпа туртса ҫапнӑ тет. Пилеш хуллинчен арҫурисем питӗ хӑранӑ тет. Арҫури ҫилленнӗ тет: «Век веков не свети», — тесе вӑрмана ҫӗмӗрттерсе кайрӗ тет.

## 926

Орпаш поҫӑнча вӑрман хоралӗ ҫӗрле ҫӳрет тет вӑрманта. Аҫатса* ҫомӑр ҫоат тет. Ҫиҫӗм ҫиҫсерсен** пӑхат — хоҫӑк йоман тӑрринче Арҫури ларат тет. «Ҫутат, ҫутат!» — тесе калат тет хоа, ҫӑпати чалӑш тӑршшӗ тет. Хорал пырса пилеш холлипе ҫо-от! ҫапат тет те, Арҫури ҫӑпатине прахсах тарса тет.

## 927

Пӗр хресчен каҫхине хӑй тӗллесе хунӑ кареке*** турттарса килме кайрӗ. Акӑ вӑл вӑрмана пырса кӗчӗ. Йывӑҫ ҫинче такам шӑн! шон! туса ларать. Уйӑх пӗрре ҫутатать, тепре ҫутатмасть.

— Свети Бох! Бох свети! Ни счетит! Ни гасит! Свети Бох! Бох свети! — такам йывӑҫ ҫинче кӑшкӑрса ларать. Хресченне Меше тесе чӗннӗ тет. Меше йывӑҫ тӑрнелле пӑхрӗ тет те йывӑҫ ҫинче пӗр Арҫури ҫӑпата туса ларнине курчӗ тет. Меше кареке ҫуна ҫине хӑпартса хума тӑрать, анчах вӑй ҫитерейместь тет.

— Эй, йывӑҫ ҫинче ларакан, пулӑш-ха ҫак кареке ҫуна ҫине хӑпартса хума! — тет Меше Арҫурине. Унччен те пулмин карек ҫуна ҫине хӑпарса выртать. Меше лашине турттарма тӑрать, анчах лаша кареке туртса каяймасть.

— Ҫав хӑпарса ларнӑ курӑнать-ха ҫуна ҫине! — кӑшкӑрса ярать те карекене пӗррех пуртӑн касмалли енӗпе туртса ҫапать.

— Ай-яй-ай-яй! Меше вара! Ай-яй! Меше вара! — тесе кӑшкӑрса тарать Арҫурине. Унччен те пулмин Меше лаши ҫунана туртса каять. Меше пӗр чарӑнмасӑр киле ҫитрӗ тет.

* Аслати авӑтса.
** Ҫиҫсе ярсан.
*** Ҫӗрӗк тунката.

### 928

Хĕрпе каччă кăнтăр кунĕнче вăрманта пушăт касса хунă тет. Лесник курасран хăраса пушăтне илсе килмен, пушăт патне ҫĕрле каймалла пулнă.

Вĕсем вара улахран таврăнсан иккĕшĕ шăппăн вăрмана тухса утнă. Вăрман хĕррине ҫитнĕ те пĕр тунката ҫинче Арҫури ҫăпата туса ларнине курнă. Уйăх текех пĕлĕт айне пулать тет. Уйăх пĕлĕт айне кĕрсен тĕттĕм ан пултăр тесе Арҫури:

— Бог, свети! Бог, свети! — тесе калать тет.

Каччă пынă та ҫивĕч пурттипе тунката кутĕнчен яра панă.

Арҫури сиксе тăнă. Ҫынсене курса куҫне-пуҫне чарса пăрахса:

— Хоть свети, хоть не свети! — тесе тарчĕ тет вăрманалла.

### 929

Упăте уйăх ҫути ҫине ларнă та ҫăпата тăвать тет вăрманта. Уйăхĕ пĕр пĕлĕт хыҫне пытанать, пĕр тухать, пĕр пытанать тет.

Упăте:

— Хуть ҫетти, хуть ан ҫетти, хуть ҫетти, хуть ан ҫетти, — тесе ларать тет.

Уйăхĕ пытансан ҫăпатине тăваймасть тет Упăте. Уйăхĕ ҫапла пĕр тухса, пĕр пытанса витлет тет. Упăте тарăхнипе ҫăпатине тăваймасăрах тарчĕ тет вара.

— Хуть ҫетти, хуть ан ҫетти, — тесе шăшлине те пăрахса хăварчĕ тет тарăхнипе.

Юнашар Хĕлип пичче калатчĕ уна. «Упăте шăшли» тесе пĕр шит тăршшĕ пек тимĕр татки кăтартатчĕ. Ҫуна тупанĕ пек кукăрччĕ ҫав тимри.

### 930

Ҫĕрле Арҫурине темиҫе хут курнă. Арҫури — ватă пĕчĕк старик — хăш чухне шăп ларать, ҫăпата тăвать. Урисем пысăк, аллисем кĕске. Арҫури час-часах шăхăрать е йытă пек вĕрет. Тепĕр чухне качака евĕр курăнать.

### 931

Тахҫан ĕлĕк-авал Арҫури ҫын куҫне те курăннă тет. Вăл утпа ҫӳренĕ тет ялан. Ялсене кĕрсен ҫынсен чӳречисене шаккаса ҫӳренĕ, ҫынсене хăй патне чĕннĕ тет. Хăй патне тухакансене кăтăкласа вĕлернĕ тет. Урам тăрăх пынă чухне хаяр сăмахсемпе ахăрса иртнĕ тет. Ҫынсен выльăхĕсене тытатыта ҫинĕ тет. Ҫынсем Арҫурирен питĕ хăранă тет.

Пĕррехинче ҫапла Арҫури пĕр чăваш ялне пынă тет те урам тăрăх ахăрса анать тет. Пĕр ҫыннăн пӳртне кĕнĕ тет те сăпкари ачине илсе тухма тытăннă тет. Урама тухнă чухне ăна йытă курнă тет. Арҫури йытăран питĕ хăранă тет. Вăл аллинчи ачине каялла кĕртсе хурать те тухнă чухне каллех ăна йытă кĕтсе тăрать. Арҫури ахăрма тытăнать те, йытти ун ҫине сиксе ларса туласа пĕтерет тет. Ун хыҫҫăн вăл яла анма пăрахнă тет. Ҫын куҫĕ умне те курăнма вăтанать тет. Ҫавăн хыҫҫăн Арҫури темле сывлăш пулса ҫын сывласан ҫын ăшне кĕрсе вырнаҫнă тет. Халĕ те пулин Арҫури ҫын ăшĕнче тет. Вăхăтран вăхăта кăтăклама тытăнать тет те, ҫынна тытса пăрахать тет.

## 932

Арçури этемрен пулнă Усал тет. Çын темле усал вилĕмпе вилсен унăн чунĕ Арçури пулса тăрать тет. Унсăр пуçне тата Арçури ухмаха ернĕ çынсенчен пулать тет. Арçури ытларах вăрманта е пĕр-пĕр çырмара пурăнать тет. Çынна аптратма юрататъ вăл. Анчах хăй те питĕ хăрать тет. Ытларах йытăран хăрать тет.

## 933

Хула кайса. Вăрман витĕр пыратăп. Арçури çыпăçрĕ те то тово витлесе пырать çакăн пек каласа: «Онтри, хутаç çакки, йĕм кантри, Онтри, хутаç çакки, йĕм кантри». Вăрман витĕр тухрăм, то тово çапла каласа вăрман витĕр кăларса ячĕ. Киле çитсен карчăкран ыйтатăп та: «Мана пĕр Арçури çыпăçрĕ те вăрман витĕр кăларса ячĕ çакăн пек каласа: «Онтри, хутаç çакки, йĕм кантри», — тесе. Эс йĕм кантрипе çыхса яман пуль те ман хутаçça?» — тесе ыйтать карчăккинчен старик. Карчăкки калать: «Ара, çĕн йĕм кантри тăратчĕ те, çавна çыхса ятăм». Арçури йĕм кантринчен питĕ хăранă тет. Вара Онтри çумне çыпăçиман тет.

## 934

Арçури вăл вăрманта пурăнать тата вăхăчĕ-вăхăчĕпе вăл лупашкара пурăнать. Вăл этеме пĕччен çĕрте пит аптăрататъ, вăл йытăран пит хăрать. Ăна йытăпа хăвалаттарсан вăл çынна пит йăлăнса чарма хушать.

## 935

Çуллахи ырă кун пĕр çын сĕм вăрманта вăрман ĕçленĕ. Хăй юман касса янă та çурса купалать. Пуртă сасси йĕри-тавраллах янраса тăнă. Кун патне пĕр упăте ачи пырать те çак çынран: «Эй, мучи, эсĕ мана ху шăлна кăларса пар-ха», — тет.

Упăтесем темме çын шăлне кăларса илсе çакса çӳреме юратнă. Ку ачин те аслисене кура çакасси килнĕ пулас. Упăтесен аслисем яланах çынна курсан ирĕксĕрех ун шăлне кăларса илсе çакса çӳренĕ. Анчах ку пĕчĕкки капла хăтланса илмеллине пĕлмен. Пĕлсен те унăн вăйĕ çитмен. Ку вăхăтра çынни юман çурăкăшне савăл çапса тăнă. Çак упăте çурине итлет те калать: «Юрать, шăллăм. Кăларса парăп, анчах эпĕ кăлариччен çак çурăк хушшине аллуна чик», — тет савăл çапнă çĕре кăтартса.

Упăте çури савăннипе чиксе те хучĕ. Çынни хăвăрттăн савăлне кăларчĕ те ачан аллине хĕстерсе те лартрĕ. Упăте ачи мĕнпур вăйĕпе çухăрать. Пур вăрмана янрататъ. Çапла çухăрнипе ытти тăванĕсем те пухăнчĕç. «Пошалстă вĕçерсе яр», — теççĕ. «Малашне шăл кăлармастăр-и?» — тет. «Çук», — терĕç лешсем. Çапла каласан çак çын Упăте ачине вĕçерсе янă.

## 936

Пĕр чăваш Шупашкара тырă сутма кайнă. Çулĕ вăрăм, лаши начар, вăйсăр пулнă. Çавăнпа чăваш кун сутипе çитеймен хулана. Чăваш çул çинче тĕл пулакан вăрмана çитнĕ. Çав вăхăтра каç пулнă. Вăрманта тĕттĕм пулса тăнă. Сасартăк чăваш çывăхĕнче: «Ау!» — тесе кăшкăрнă такам. Ун-

тан: «Ха-ха-ха!» — тесе ахăра пуçланă. «Арçури çухăрать!» — тенĕ чăваш хăй ăшĕнче. Чăваш лаши туп! тăнă та ниепле та малалла каяйман. Чăваш хăравçă пулман: Арçури çинчен çынсем каланине вăл илткеленĕ. «Чимха, — тенĕ вăл, — эпĕ илтнĕччĕ мĕн тумаллине!» Хăвăрт пĕр юмана каснă та хайхи чăваш юманне çурса çурăкне савăл çапса кĕртнĕ. Çавăнтах Арçури: «Ай-ай-ай! Ай-ай!» — тесе кăшкăрса янă. Савăл ăна хĕстерсе лартнă пулнă. «А!.. Татах кăшкăран-и, лашан çулне пӳлĕн-и?» — тенĕ те чăваш савăла юман çурăкĕнчен кăларнă. Арçури, пĕр енчен, хĕпĕртесе, тепĕр енчен, хăраса: «Ай-ай!» — тесе таçта тарса çухалнă.

## 937

Ĕлĕк вăрман нумай вырăнта пулнă. Пĕр çын хăртнă тĕплеме кайнă, çакă çын патне пĕр Упăте пырать те: «Катти пур-и, катти пур-и?» — тесе тăрать тет. Çынни тунката çурма тапратнă, савăл çапса кӳртнĕ. Упăтене калать: «Тытса тăр-ха çакă çурăкран», — тет. Упăти калать: «Тытайне тытап та, мĕн ятлă эсĕ?» — тет. Çынни калать: «Пĕлтĕр хĕсĕннĕ ятлă эпĕ», — тет. «Ну, эппин, тытам-ха», — тесе тытрĕ тет. Как тытнă, çынни савăлне илет те, Упăте алли хĕсĕнсе ларать. Хай çын килне тарать. Ну Упăти кăçкăрать: «Пĕлтĕр хĕсĕннĕ, ан кай, ан кай!» — тесе. Çын тарса хăтăлнă. Хай хĕсĕннĕ Упăте патне пуçтарăнчĕçĕ тет ытти упăтесем. «Кам хĕстерчĕ сана?» — тесе ыйтаççĕ тет. «Пĕлтĕр хĕсĕннĕ», — тесе ответ пачĕ тет. «Апла эсĕ пĕлтĕрех хĕсĕннĕ-çке», — тесе калаççĕ тет, хайхине майласа аллине вĕçерсе ячĕç тет.

## 938

Иван ятлă çын утсене çитерме кайнă тет вăрмана. Лашисене янă тет те сывăрма выртнă тет ыттисемпе пĕрле. Çанта Арçури пынă тет: «Ăçта-ши Иван? Ăçта-ши Иван?» — тесе шыраса çӳрет тет. Хыпашлать: «Онта та кот, конта та кот», — тет. Оринчен тортать тет. Иванĕ: «Во имя святого духа, отца и сына, аминь!» — терĕ тет. Арçури вăрмана кĕрсе кайрĕ тет çĕмĕрттерсе.

## 939

Арçури ĕлĕк питĕ хаяр пулнă, çынсене хăратса çĕмĕрттерсе çӳренĕ. Арçури çынсене кăтăкласа, шăлĕсене кăларса вĕлернĕ. Вăл питĕ тăвартан хăранă. Пĕррехинче çынсем каçпа кăвайт чĕртсе ларнă. Кăвайт хушшинче пĕр шăмă выртнă. Пĕр çынни ку Арçури пуль тесе тăвар сапма тăнă. Тăвар сапсан шăмă шăтăртатса çунма пуçланă, кайран: «Тун-турук!» — тесе вăрмана çухăрса кĕрсе кайнă. Вăл Арçури пулнă.

Тата пĕрре çапла вăрмана кайнă та, вĕсене хирĕç Арçури килнĕ. Вĕсем хăранипе пĕр йывăç хăвăлне кĕрсе ларнă. Хăвăлран кучĕсене мăкăртса ларнă. Арçури кучĕсене хыпашланă та: «Çĕр çинче икĕ котлă çын та пор иккен», — тесе шутласа каялла кайнă.

## 940

Икĕ çын вăрмана кайнă тет. Хайхи кусене Упăте курнă та хăвалама тытăннă. Çыннисем тарса пыраççĕ: икĕ енчен хăвăл йывăç çул çинче выртнине курах каяççĕ. Упăте вăл ĕлĕк чухне çыннăн пуç тирне кăна сӳсе илнĕ

тет. Ҫавӑнпа ҫыннисем пуҫӗсене пытарас тесе иккӗш икӗ енчен чикеҫҫӗ те хураҫҫӗ пуҫӗсене хӑвӑла.

## 941

Арҫурине ҫынтан пулнӑ теҫҫӗ. Ку таврари вӑрмансенче ӗлӗк Арҫури нумай пурӑннине калаҫаҫҫӗ ваттисем.

Ӗлӗк иккӗн вӑрмана кайнӑ тет. Вӗсем хуп ӳкернӗ тет те пуҫӗсене хуп ӑшне чиксе выртнӑ тет.

Ҫӗрле пулсан Арҫури пынӑ тет. Арҫури хуп тавра чупса ҫаврӑнать тет. Аптраса: «Мӗнле икӗ кутлӑ ҫын?» — тесе калать тет. Ҫапла ҫаврӑнсан-ҫаврӑнсан аптраса каять тет.

## 942

Икӗ ача вӑрмана мӑйӑра кайнӑ тет. Ҫӳрерӗҫ-ҫӳрерӗҫ тет, вӑрманта мӑйӑрне те поҫтарнӑ тет ӗнтӗ. Ҫаксем пӗр шӗшкӗ тӗмми хыҫӗнчен Арҫурине курах кайрӗҫ тет. Ҫывӑхрах ӳкнӗ хӑвӑл йӑвӑҫ выртать тет. Ҫанта пыраҫҫӗ те кусем, иккӗш ик поҫӗнчен поҫӗсене хӑвӑла чиксе хураҫҫӗ. Арҫури пычӗ тет те:

— Полать няк этем икӗ котлӑ, — тесе каларӗ тет те пӑрахса карӗ тет. Арҫури ҫынна поҫӗ полсан анчах тытать тет, поҫне топмасан тытмаҫ тет.

## 943

Икӗ ҫын Упӑтене тӗл пулнӑ тет те унтан хӑраса хӑвӑл юман каски ӑшне пуҫӗсене чиксе выртнӑ тет. Пӗри пӗр вӗҫӗнчен, тепри тепӗр вӗҫӗнчен.

Упӑте пычӗ тет те иккӗшне те пӑхрӗ тет. Унтан тӗлӗнсе каларӗ тет: «Ай туру, ай туру! Ку мӗнле ҫын пулчӗ? Пӗр енчен пӑхап — кутякки, тепӗр енчен пӑхап — кутякки!» — тесе каларӗ тет.

## 944

Ӗлӗк, свобода вӑхӑтӗнче, аттепе Хриттон Яккӑльч иккӗш те лашапа вут вӑрлама вӑрмана кайнӑ. Вӑрмана ҫитеҫҫӗ те йывӑҫ касма тытӑнаҫҫӗ. Иккӗш те пӑчкӑпа. Пӑчкисем кусен хӗсӗнсе ларнӑ тет те ниепле те шумаҫҫӗ тет. Хриттон Яккӑльч калать тет: «Кона Арҫури ҫапла турӗ вӗт, тавай Арҫурине осал сӑмахсемпе каласа вӑрҫас, вӑл осал сӑмахсенчен пит хӑрать теҫҫӗ», — тет. Пуҫларӗ тет ку вӑрҫма, темле осал, намӑс сӑмахсем калать тет. Хайхи йывӑҫ тӑррине пӑхатпӑр тет, Арҫури йывӑҫ тӑрринче лара парать тет. Онччен те пулмарӗ, лӑпӑр-лӑпӑр, лӑплап темскерсем ӳкме пуҫларӗҫ тет ҫӳлтен. «Ку Арҫури сысса пӑрахрӗ ӗнтӗ хӑранипе», — тесе калать тет Хриттон Яккӑльч. Пӑчкисем тинех пушанса кайрӗҫ тет. Вара вутта туртса касма пуҫларӑмӑр тет. Онччен те полмарӗ тет, Сӗнтӗрпоҫ енчен такамсем кармуньпе, пупӗньпе юрласа шавлаҫҫӗ тет. Пире тытма килеҫҫӗ тесе вотта часрах лавсене хорса ҫыхса лартрӑмӑр та лашасене хӑвалама пуҫларӑмӑр тет. Лашасем нимпе те тортмаҫҫӗ тет. Хриттон Яккӑльч калать тет: «Тавай пӗкке тепӗр май ҫа-

вăрса кӳлетпĕр», — тесе. Лашана тăварса пĕкĕ шăлтăрмине каялла туса кӳлтĕмĕр те, пирĕн лашасем тин отма поçларĕç тет. Çапла вотă торт-тарса килтĕмĕр тесе калать тетчĕç.

**945**

Ак çакăнти вăрманта та Арçори полнă тет. Хĕрлĕ кĕпепе çӳрет тет. Çохăрать тет. Вăрман çĕмĕрлет тет кăна. Йывăçсем ванаççĕ тет кăна. Çĕмĕрме чарнать тет те — йывăçсем каллех чиперех тет.

Асать калатчĕ. Кăнтăрлахи апат пĕр шор хăмă патĕнче çирĕмĕр тет. Апат çисен килелле отрăмăр тет. Каллех çав хăмă патнех пырса тохрăмăр тет. Çичĕ хутчен çав хăмă патне тохнă, çохалса кайнă. Орисене олăштарса сырсан тин çол топнă. Арçори олăштарать теççĕ он пек чохне. Арçори некрещеный çынсенчен полнă тет. Асăнман пирки хăй çинчен çапла асăн-тарать тет. Тăвайккирен аннă чохне лашана та тăварса ярать тет. Пĕккине тепĕр майлă тавăрса кӳлсен тин ойрăлать тет.

**946**

Çĕнкасри Ача варĕнче пулнă ку. Çак Ача варĕ çумĕнчен малтан яла килекен тӳрĕ çул выртнă. Çак çул тăрăх Çĕрпӳ районĕнчи Тепикасси, Вăрманкас, Пушарпуç, Апакасси ялĕсенчи çынсем пирĕн ял витĕр Ишекелле, Шупашкаралла каятчĕç. Çавăнпа та питĕ лайăх çул пулнă кунта. Çулĕ Ача варĕ патĕнченех иртнĕ. Унта Арçури пурăннă. Ытти ял çыннисем çак Арçури çинчен илтнĕ, çавăнпа та пĕччен çӳремен вĕсем. Арçурийĕ çапах вĕсенчен хăраман, лешсем нумайăн полсан та. Пĕррехинче Тепикасси ялĕнчен пирĕн яла туй килме тухнă пулнă. Ача варĕ патне çитсен лашасем тăварăна-тăварăна кайрĕç тет. Лашисем утмаççĕ тет. Атте çапла каласа паратчĕ: «Вара Арçурийĕ малтан ахăрать тет, тăмана пек, ӳхĕ пек ӳхĕрет тет, ахăлтатса кулать тет. Вара туй çыннисем кĕлтуса ваттисене асăнса Арçурине пĕр хушпу тумĕ утса пачĕç тет. Вара тин уйрăлса кайрĕ тет. Вăл Арçурийĕ нумай халăхран та пĕртте хăрамасть тет, халăхпа та çĕнтерме йывăр.

**947**

Ĕлĕк-авал сĕм вăрманта хура пӳртре вăрман хуралçи пурăннă тет. Пӳрчĕ тавралла тăранмалăх çĕр улми, пахча çимĕç лартса пурăннă тет. Картара чăх-чĕп усранă тет, йытă та тытнă тет.

Çав хуралçа каççерен Арçури пырса хăратнă тет: пахча çимĕççене таптанă, чăххи-чĕппине тустарнă тет. Каçхине хуралçă йыттине пӳрте кĕртнĕ тет.

Ку каçхине те çаплах турĕ тет. Çĕрле пулсанах пӳрт патне Арçури пычĕ тет те пуçларĕ тет ахăрма-сухăрма, чăхсене тустарма. Хуралçă çакна илтрĕ тет те йыттине алăк уçса кăларчĕ тет. Йытă Арçурине сасси илтĕнми пуличченех хăваласа кайрĕ тет.

Тул çути килсен хуралçă йытă вĕрнĕ еннелле кайрĕ тет. Кайсан-кайсан пăхать тет: йывăç айĕнче йытти ларать тет, турат çинче — Арçури, шăмă пулнă тет те çакăнса тăрать тет. Йытти ăна сыхланă иккен. Хуралçă шăмма турат çинчен илчĕ тет те çĕре чавса пытарчĕ тет. Çавăнтан вара Арçури урăх нихăçан та курăнмарĕ тет.

## 948

Пĕррехинче вăрмана лаша çитерме кайса. Каçхи сивĕрен вутă хурса ăшăнас тесе. Çавăн пек калаçса ларнă чух Арçури пырса кĕчĕ.

Онтри вутă сӳнсе ларасран шаларах хучĕ. Çакна Арçури курчĕ те калать: «Онтри, вуттине шаларах хур. Онтри, вуттине шаларах хур», — тесе каласа йăпăлтатса тăрать. Тăрать-тăрать те каллех çавăн пек калать.

Онтри вĕри вутпуççине ярса илет те тытăнать хайхи çавăрма. Вĕри вутпуççи Арçури пуçне лекет те, Арçури кăшкăрса чупса кĕрсе каять тет вăрмана: «Онтри, мана пĕтертĕн, Онтри, мана пĕтертĕн!» — тесе.

Çавăнтанпа урăх Арçури пымарĕ тет.

## 949

Пĕр çын, кĕрлевсем, ут çухалнă та, шырама кайнă. Тĕттĕм полать тит. Вот чĕртсе ларап тит. Вă-ă-ăрămскер пыч тит те вут айпе чĕлхине кăларать тит. Вунă хут каçса лартăм, çаплипех куçать тит.

Карян: «Çакăнта Сар хорн киремеч пор тесе калаç. Киремет килсе çăлтăр, — тесе каларăм тит. — Çăлсан тиха параттăмччĕ», — тенĕ тит. Нумай вăхăт иртрĕ-и, сахал-и, просек тăрăх уретниксем пыраç тит, йĕкĕр чанпа. Çанта çитсен сиксе анчĕç тит те нохалясампа çапса пĕтерчĕç тит арçурисене. Тарч тит кăшкăрса.

Арçурине ватнă хыççăн тĕлĕкре: «Не забудь», — тесе йонарĕ тит Киремет.

Карян пилĕк çолтан çавах исе пач тит çак çын тихине.

## 950

Пĕр арçын арăмĕ çине тарăхнă тет те тухам та çакăнам тесе арăмне хăратас тесе каларĕ тет. Вара вĕрен йатрĕ тет те сарай хыçне тухса кайрĕ тет. Сарай хыçне çитрĕ тет те виличчен ларса тула каям-ха тесе шутларĕ тет. Шăма лариччен хăй Турра кĕлĕ тăвать: «Эй, Турă, хăрататăп анчах, халех вилес килмест-ха», — тесе каларĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет, арçурисем вĕрен йатса каллĕ-маллĕ утаççĕ тет.

«Халь кăна çакăнтаччĕ, ăçта кайса кĕчĕ-ха?» — теççĕ тет. Турра кĕлтуни арçынна вилĕмрен çăлса хăварчĕ тет. Старик халĕ те пурăнать тет, çакăнса вилме шутламасть те тет.

## 951

Карчăкпа старик пурăннă тет. Çаксен пӳрт лартмалла пулнă. Пӳрте майлаштаркаласа лартсан тӳпене тӳпе-шулап хумалла пулнă. Хайхи старик хăйне юлташ тупса вăрмана тӳпе-шулап шырама каять тет. Каç пулсан вĕсем çывăрма выртаççĕ. Вĕсем патне арçурисем пыма вĕреннĕ. Арçурисем кусене çывăрма памаççĕ.

— И-хи-хик, ахтер! И-хи-хик, ахтер! — тесе чышаççĕ кусене. Анчах та стариксем пĕр сăмах та чĕнмеççĕ. Мĕншĕн тесен сăмах хушсан арçурисем кăтăкласа çын чунне кăларса илеççĕ. Тепĕр каç валли старикпе юлташĕ шутласа илеççĕ. Каç пулсанах кусем тӳпе-шулап çине хайсен сăхманне витсе хураççĕ. Хăйсем ухă тытса аякка кайса тăраççĕ.

Хайхи арçурисем килеççĕ те тытăнаççĕ тӳпе-шулапа аяккинчен тӳпелеме!

— И-хи-хик, ахтер! И-хи-хик, ахтер! — тесе шулапа стариксем вырăнне шутласа чышаççĕ. Аллисем ыратакан пулсан хайхисем ку шулап старик мар тесе куçĕсене çĕклеççĕ те тавраналла сăнаççĕ. Старикпе юлташĕ катаран ухха ярăнтараççĕ. Пĕрне куçранах лекет. Арçурисем вара:

— Турăн, турак! Турăн, турак! — тесе вăрманалла тараççĕ. Вăрман вĕсем тарнипе шатăртатса хуçăлса пырать. Анчах стариксем йывăç айне пуласран хăтăлса юлаççĕ.

Тепĕр каçхине ватă арçурисем килеççĕ. Стариксем ку вăхăта охотнике чĕнсе килеççĕ. Арçурисем каллех шулапа тӳпелеме пуçлаççĕ. Çапла çапсан-çапсан вĕсем тӳпе-шулапа хăлхисене хурса итлесе пăхаççĕ:

— Кучĕ-и, пуçĕ-и? Кучĕ-и, пуçĕ-и? И-хи-хик, ахтер! И-хи-хик, ахтер! — тесе татах тӳпелеме пуçлаççĕ. Аçамĕ йăлтах çĕтĕлсе шăтса пĕтет. Арçурисем куçĕсене çĕклесе тавраналла тинкерме пуçласан охотник кусене пăшалпа перет. Пĕр Арçурийĕ вилет. Чĕрĕ юлнă Арçурийĕ виллине йăтать те вăрмана кĕрсе каять. Охотник, старик тата юлташĕ сывă Арçури хыççăн йĕрлесе каяççĕ. Кайсан-кайсан Арçури пуранна вырăна çитеççĕ. Арçурисем пĕр тарăн çырмара пуранна пулнă. Ачи-пăчисем кĕшĕлтетеççĕ кăна! Çемйисем, ачисем вилнĕ Арçуришĕн макăраççĕ тет. Çырмара питĕ нумай арçури пураннă. Вĕсем вăрмана тӳпе-шулап тума килнĕ çынсене кăтăкласа вĕлерсе, тӳпе-шулапĕсене çак çырмана илсе килсе çак шулапсенче пураннă тет. Охотник хайхи арçурисене йăлтах пăшалпа персе вĕлерсе пĕтерне. Çавăнтанпа арçури пĕтнĕ.

## 952

Пĕр хĕр ачан ашшĕпе амăшĕ ĕçме каяççĕ. Вара çак хĕр ларма хĕрсем пуçтарать. Хăй выльăхĕсене пама тухнă хушăра хĕрсем кайма хатĕрленеççĕ.

— Ан кайăр, ан кайăр, — тет ку. — Кăмакара шаркку, пĕрле ларса çийĕпĕр.

Хĕрсем лапка çинче такам выртнине сисеççĕ те тухса тараççĕ. Хĕр пĕччен тăрса юлать тет.

Арçури кăмака çинчен сиксе анать те:

— Иксĕмĕр ларса çийĕпĕр, — тет.

Çав хушăра хĕр ачи тухса тарать. Алăкĕ икĕ хутлă пулнă тет. Хĕр ачи икĕ алăк хушшине тăрса юлать тет. Арçури тулалла вирхĕнсе тухса каять. Вара хĕр ачи каялла кĕрсе тарать те алăкне çаклатса лартать.

— Кĕрт-ха, хĕрĕм, кĕрт, — тет Арçури пӳрт йĕри-тавра чупкаласа.

— Ак сана пуртă, — тесе кăтартать хĕр ачи.

Арçури ним тума аптранипе витене кайса выртать, вара ирччен шăнса вилет. Ашшĕпе амăшĕ хăнаран килеççĕ те пытараççĕ.

## 953

Арçури кĕлтумасăр пытарнă вилнĕ çыннăн ура-алă туни шăммисенчен пулать.

Пĕр каччă ют яла хĕр патне кайнă тит те таврăнман. Ун шăллĕ те çитĕнсе çитет, каччă пулать. Пĕрре, утсам пăхма кайсан, ыттисенчен аяккарах пулнă. Вăл вăрманта юрă илтет. Юрланă еннелле утать. Анчах никам та çук, тата урăх çĕртен илтĕнет. Вара каччă Арçури пуль тесе шутлать. Вут хурать те ларать. Арçури юрлани илтĕнет. Каччă хăраса каять, вутпуççипе

карта çавăрать. Арçури пырать, пĕчĕк çын, вара ыйтатать ку каччăран: «Шăллăм, утсам пăхма тухрăн-и?» — тит. Ку хăра-хăра калаçать. Арçури калать тит: «Эс çав-çав яла хĕр патне çӳрен, ан кай унта, вăсам сана вĕлерешшĕн сыхлаç, — тит. — Эп те кайрăм та унта, вĕлерчĕç те părахрĕç. Эс ыран ман шăмăсене пуçтар та кĕлтутарса пытар», — тит. Тепĕр кунне каччă кĕреçепе чавса кăларать шăммисене, вара пытараççĕ. Çавăн хыççăн Арçури çӳренине курман тит вара.

## 954

Старикпе мăнукĕ утсампа кайнă тит вăрмана. Лаша пăхакан ачасене куримаççĕ те вут хурса лараççĕ. Арçурисем шăхăрма тапратаççĕ.

Старик вара калать: «Тавай кунтан каятпăр», — тит. Лашисем çине утланса лараççĕ те каяççĕ каялла. Старик калать: «Матрен, ан ӳк», — тит. Хыççăн арçурисем кăшкăрса пыраççĕ тит: «Матрен, ан ӳк, ах-ах-ах!» Мĕн яла çитичченех çохăрса пычĕç тет вара.

## 955

Улхашсем лашасем шырама кайсан вăрманта çĕтсе кайнă. Ку çынна хирĕç тем кăшкăрнă сасă илтĕне пуçланă. Çын ку сасса хирĕç кăшкăрнă. Унччен те пулмарĕ, ку çын патне мăнтăрскер пырса та тăчĕ, çăварĕ унăн ĕнсе хыçĕнче тет. Çыннăн пĕтĕмпех сехри хăпса тухнă. Хайхи Арçури ку çынна калать:

— Айта ман патма çывăрма, — тет.

Çын калать хăранипе:

— Кайăпăр, — тет.

Пыраççĕ кусем. Арçури пӳрчĕ патне çитрĕç. Пӳрчĕ виçĕ кĕтеслĕ тет. Пӳртне пĕтĕмпех юман пĕтевсене кăкласа тунă тет. Пӳрте кĕртрĕ тет ку çынна, апат çитерчĕ тет, апат çисен тула, пӳрт хыçне, тухса выртма хушрĕ тет. Çын выртас умĕн пăхать çӳлелле, курать: çакăнса тăрать пĕр пĕрене. Çын хăй ăшĕнче: «Мана вĕлерме хунă пуль ку пĕренене», — тесе шухăшларĕ.

Каç пуларахпа Арçури тухрĕ тет те пăхрĕ тет хайхи çынна. Çын çывăрам пек пулса выртнă вăл хушăра. Арçури часрах чупса кĕрсе кайрĕ тет. Çын вăл хушăра вырăн çинчен тăр та тар айккалла. Хай пĕрене теп! терĕ тет çын выртнă çĕрелле. Хай çын кăшт тăхтасан пырса пăхрĕ пĕрене патне те пĕренине йăвантарса ярса каллех выртрĕ тет çывăрма.

Ир пулсан Арçури тухрĕ тет çын патне, чĕнет:

— Часрах тăр!

Çын калать:

— Тăтăм!

Арçури ыйтать:

— Мĕн куртăн кĕçĕр?

Çын калать:

— Ман çине кĕçĕр пĕр хăмăтла* пырса ӳкрĕ те, эпĕ ăна тытса ывăтрăм, — тет.

Арçури тĕлĕнсех кайрĕ. Çынна калать:

---

* Хăнкăла.

— Атя, эппин, сана киле леҫсе хӑварам.

Ҫул ҫинче кусем калаҫма тапратрӗҫ. Ҫын калать:

— Пирӗн килте сӑра пилӗк пичке, сана пӗр пичкине парӑп, шӑллӑмсем килте пулсан параймӑп, — тет.

Арҫури ыйтать:

— Сирӗн килте йытӑсем пур-и?

Ҫын калать:

— Ҫук.

— Эппин, апла пулсан пыратӑп, — тет Арҫури.

Ҫитрӗҫ кусем хайхи ҫынсен авӑн картишне. Ҫын Арҫурине арлаҫҫи* патне тӑратса хӑварчӗ. Хай кайрӗ киле сӑра ӑсса тухап тесе.

Ҫын килелле кайнӑ чух Арҫури арлаҫҫи урлӑ пуҫне йӑтса пӑхать тет. Вара ҫын ҫав хушӑра ялти мӗнпур йытта пухнӑ. Кайнӑ вара пухӑнса Арҫури ҫулне татмалла йытӑсемпе. Тапратнӑ вӑскӑртмашкӑн. Хай Арҫури вӑрмана ҫӗмӗрттерсех тарчӗ тет. Ҫынсем кайнӑ йӗрлесе — ни пӳрчӗ, ни пӳрт вырӑнӗ ҫук тет. Ҫапла вӗҫтернӗ Арҫури сӑсӑлне.

## 956

Ӗлӗк вӑрӑсем тахӑш ялтан ача вӑрланӑ тет. Ачи питӗ макӑрать тет, вара вӗсем ӑна вӑрмана пӑрахса хӑварнӑ.

Арҫури ача макӑрнине илтсе хӗрхеннӗ тет. Вара вӑл ҫӗр ҫулхи ҫӑка касрӗ тет, хупне сӳрӗ тет, сӑпка турӗ тет, ачине сӑпкине хучӗ тет те сиктерет тет. Ачи ҫаплах макӑрать тет.

Пӗр кунхине Кивҫурт ҫыннисем ҫавӑнта кайса пӑхнӑ тет: юман туратти сенчен сӑпка ҫакнӑ тет те, такам сиктерсе тӑрать тет, курӑнмасть тет, хӑй пӗрмай: «Этем ачи этемпе пултӑр. Арҫури ачи Арҫурипе пултӑр», — тесе мӑкӑртатать тет.

Арҫури ӗлӗкхи ҫынсемшӗн усал пулман тет, Христос тӗнне йышӑнсан кӑна усал тума пуҫланӑ тет вӑл ҫынсене. Вара ҫынсем ачана яла илсе кайнӑ тет, Арҫури питӗ хурланнӑ тет, ачалла макӑратчӗ тет. Ҫавӑнпа ҫав вӑрмана Сиктерӗш теҫҫӗ.

## 957

Пӗрисем вӑрман хӗрринче тырӑ вырнӑ. Амӑшӗ ачине тӗм кутне хунӑ. Киле кайнӑ чух маннӑ. Амӑшӗ ачине апайӑшӗ илсе килнӗ тенӗ. Каҫпа кайнӑ та, Арҫури шурӑ шупӑрпа чӗркенӗ ачине силлесе ларать тет: «Ан макӑр, ан макӑр», — тесе.

## 958

Карчӑкпа старик вӑрман хӗрне тыр вырма кайнӑ. Вӗсен пӗчӗк ача пулнӑ. Вырма пуҫласан ачана тӗм кутне выртгарнӑ.

«Старик, эпӗ киле апат пӗҫерме каятӑп», — тенӗ те арӑмӗ тӑрса утнӑ. Ачине тӗм кутӗнчен илсе кайман. Старикӗ ӗҫленӗ-ӗҫленӗ те вӑл та киле кайма тухнӑ. Вӑл арӑмӗ ачине илсе кайнӑ пулӗ тесе тӗм кутне ҫаврӑнса та пӑхман. Киле пырать те, арӑмӗ ачана илсе килмен иккен. «Ну, мӗн тумал-

* Урлаҫҫи.

ла?» — шухӑшлаҫҫӗ кусем. «Юрӗ-ха, ыран ирччен выртӗ унтах», — тесе лӑпланчӗҫ тет, ҫывӑрма выртрӗҫ тет.

Каҫхине Арҫури тӗм кутне пынӑ та ачана юман тӑрне илсе хӑпарнӑ.

Тепӗр кунне упӑшкипе арӑмӗ унта пынӑ та Арҫури юман тӑрринче ачана юрласа сиктернине кураҫҫӗ. «Мӗн тумалла?» — шухӑшлать карчӑкки. Ачана илес пулсан мӗн те пулин шухӑшласа тупмаллах.

«Кума, пар-ха ачана», — тесе ыйтнӑ стариккипе карчӑкки. Арҫури кума тенине илтсен савӑнсах кайнӑ. Ачана антарса панӑ.

## 959

Пӗр чӑваш хӗрарӑмӗ тырӑ вырнӑ чухне уя ачине манса хӑварнӑ тет. Ача тӗлне шӑпах Арҫури килсе тухать. Пӑхать — ача макӑрса выртать. Мӗн тумалла? Ачана пӑхас пулать.

Арҫури ачана:

— Ан макӑр, ан макӑр, — тесе йӑпатать.

Ача амӑшӗ киле килет те ачине манса хӑварнине аса илех каять. Чупать уя. Арҫури патне ҫитет те:

— Кумма, ачана пар-ха, — тет.

Арҫури савӑннипе ачине ҫӗр ҫине хурать те:

— Мана кумма терӗ-ха, мана кумма терӗ-ха! — тесе сиккелесе каять тет.

Тыр вырса пӗтерсен ана ҫине кӗтӳ кӗртсе янӑ. Арҫури пынӑ та выльӑхсене хӑваласа ярать:

— Хас, тӑр-р! — тесе калать. — Ман кумма анисене ан таптаса ҫӳрӗр! — тесе калать тет.

## 960

Пӗрре упӑшкипе арӑмӗ ача йӑтса уя тырӑ вырма кайнӑ тет. Каҫ пуласпа арӑмӗ упӑшкине калать тет: «Эпӗ киле каятӑп. Эсӗ кайран ача йӑтса пыр». Упӑшки киле ачисӗрех пырать тет. Ачи ҫинчен кайран тин аса илеҫҫӗ тет те шырама каяҫҫӗ тет. Хӑйсен ани патне ҫитсен кураҫҫӗ тет: Арҫури ачине йӑтса тӑрать тет. Ачи макӑрать тет, Арҫурийӗ лӑплантарас тесе юрлать тет:

Апу прахса хӑварчӗ-и?
Аҫу манса хӑварчӗ-и?

Арҫурие ҫиллентерес мар тесе ачин амӑшӗ: «Кума, ачи макӑрать-и?» — тесе ыйтрӗ тет. Арҫурийӗ ачине ҫӗре хучӗ тет те: «Мана кума терӗ, мана кума терӗ!» — тесе савӑнса вӑрманалла кӗрсе кайрӗ тет.

## 961

Упӑшкипе арӑмӗ сӑпкари пӗчӗк ачине те илсе вӑрмана утӑ ҫулма кайнӑ. Утӑ ҫулсан-ҫулсан арӑмӗ киле апат пӗҫерме каять. Упӑшки ҫулса юлать. Хӗвел анса ларсан упӑшки ҫавине ҫӗклесе киле каять. Ачи вӑрманах юлать. Килте упӑшкипе арӑмӗ ҫиме лараҫҫӗ. Пӑхаҫҫӗ: ачи ҫук.

Арӑмӗ тухса чупрӗ тет вӑрмана. Пӑхать: пӗр Арҫури ачине хӑваран сӑпка туса йывӑҫран янӑ та сиктерет тет:

А-а-а-а-а-а.
Амăш прахса хăварнă,
Ашшĕ манса хăварнă.

Хĕрарăм ним калама аптранипе:
— Арçури кума, ачана парса яр-ха! — тет.
— Парас, парас, кума, ах-ха-ха-ха-ха! Парас, — тет Арçури.
Вара Арçури çав кума ачине курма пĕрмаях çӳрет тет çав çынсем патне.

## 962

Арăмĕпе упăшки тырă вырма лашапа кайнă тит. Ачине сăпки-мĕнĕпех илсе кайнă тит. Ачи вăрман хĕрринче пулнă тит. Каç пулас чух арăмĕн çăкăр-яшка пĕçерме килне килес пулнă тит. Сăпкине юман тураттинчен çакнă тит те, ачи çывăрать тит. Арăмĕ упăшкине калать тит: «Ачи çывăрать-ха. Пынă чух илсе пырăн».

Упăшки лашапа юлать. Килĕнче арăмĕ яшкине пĕçернĕ, çăкăрне пĕçернĕ, упăшки те хиртен таврăннă. Упăшки апат çинĕ те пӳрт умне тухса выртнă. «Ачи çыврать пуль-ха, çавăнпа упăшка шарламарĕ», — шухăшлать тит арăмĕ. Хăй те çывăрма выртнă тит. Ирхине пăхаççĕ — сăпка та çук, ачи те çук. Ачи ана çине юлнă тит. Упăшки лашапа вăрман хĕрне кайнă тит. Пырса çитет тит те, ача темле ют хĕрарăм аллинче тит. Леш çӳçне-пуçне тустарнă тит. Ачине силле-силле юрлать тит:

Аннӳ пăрахса хăварчĕ,
Аçу манса хăварчĕ...

Хайхи çын хăранипе: «Ах, Арçури кума, аптратрĕ пуль ачи макăрса», — тесе калать тит. «Сăпаççипă сана кума тунăшăн, халĕ ĕнтĕ эпĕ арçури мар, — тит Арçурийĕ. Ачине тытнăскер урапа çине хăпарса ларчĕ тит. Яла таврăнчĕç тит. Ватăлса виличченех Арçури çав çынсем патĕнче хытă ĕçлесе пурăннă тит.

Арçури ялан этеме тухасшăн тит, арçурире пурăнасшăн мар тит.

## 963

Пĕррехинче амăшĕ тырă вырнă вăхăтра кăкăр ачине çĕмел çумне вырттарать. Каç пулсан амăшĕ хăвăртрах яла каçхи ĕç пуçтарма каять. Ачи çинчен упăшкине асăрхаттарса хăварать. Ачи макăрман та, ашшĕ ун çинчен манса кайнă. Лаша çине утланать те яра парать килнелле. Киле çитсен арăмĕ тӳрех ача çинчен ыйтать. Упăшки хирĕç нимĕн те калаймасть. Хăвăртрах лашана каялла çавăраççĕ те вĕçтереççĕ уялла. Вĕсем çитнĕ çĕре Арçури хăйĕн вăрăм та çăмлă аллисемпе ача тытнă та юрласа лăплантарса ларать тет:

Апу çуратса янă,
Аçу манса кайнă,
О-о-о-ой, ачине,
Çывăр, ман пулас ача.

Хайхи упăшки: «Кума, кума, ачана пар-ха! Аслă кума тăватпăр сана», — тет. «Кума, сыснисем хоç, хоç!» — тесе кăшкăрать тет ачин амăшĕ.

Вара Арçури ачана пăрахса хăварса тарчĕ тет, мĕншĕн тесен Арçури сыснасенчен питĕ хăрать тет. Пĕррехинче сысна вăрманта йĕкел çинĕ чухне Арçурин хӳрине çыртса татнă пулнă тет.

## 964

Ĕлĕк пĕр хĕрарǎмǎн пĕчĕк ачи пулнǎ. Тырǎ вырма кайнǎ чух яланах ачине пĕрле илсе çӳренĕ тет. Халĕ пĕррехинче ачине кĕлте çумне хурса хǎварнǎ тет те хǎй вырма кайнǎ тет. Кǎнтǎрлахи апат тума кайсан пǎхать те тĕлĕнсе каять тет хĕрарǎм. Ачине Арçури тытнǎ тет те сиктерсе ларать тет.

Хĕрарǎм ачине илесшĕн тет, лешĕ памасть те памасть тет. Мĕнле илес тесе шутларĕ тет хĕрарǎм. Хайхи шутласа тупрĕ тет. «Кума тǎвǎп, кума тǎвǎп, ачана пар-ха», — тесе калать тет. Çапла вара кашни кунах Арçури ача патне пыра пуçларĕ тет. «Кунтан мĕнле хǎтǎлас?» — тесе шутлать тет хĕрарǎм. Арçури пырсассǎн хĕрарǎмĕ ыйтать тет: «Эсĕ пĕчĕккĕ те, пысǎккǎ та пулма пултаратǎн тесе калаççĕ çынсем. Кĕрейместĕн пулĕ çакǎ чĕлĕм ǎшне?» Тупǎшма пуçларĕç тет хайхискерсем. Хĕрарǎмĕ хайĕннех перет тет. Арçурийĕ юлашкинчен кĕрсе кǎтартма шутларĕ тет. Кĕчĕ те кайрĕ тет. Хĕрарǎм çакна анчах кĕтнĕ. Тытать те чĕлĕме хупласа лартать тет, кайран çĕр айне чавса пытарать тет. Çапла вара хĕрарǎм Арçурирен хǎтǎлать тет.

## 965

Пĕр çын вотǎ торттарать тет. Çакǎн çони çĕмĕрĕлсе кайнǎ. Ку çын лашине пĕрмаях: «Ы-ы, Арçори, ы-ы, Арçори!» — тесе ятлать тет. Кĕç Арçори пырса та çитет тет.

— Мĕн кирлĕ сана, мана хĕрĕх те пĕр хут чĕнтĕн, — тет Арçори.

Леш çынĕ:

— Çона çĕмĕрĕлчĕ-çке, — тет.

— Отмǎл çохрǎмра, сарай хыçĕнче çона тǎратмалла тǎратчĕ», — тет Арçори. Тем самантра илсе те пурат çара çонана.

Çонана çыхса пĕтерсен Арçори:

— Но! — терĕ тет те çохалчĕ тет.

Арçори çам пек çынна пит полǎшнǎ тет.

## 966

Арçурин томтир полать тет. Çав томтире топса тǎхǎнсан çынна никам та кораймас тет, о вара таçта япала кĕрсе илме полтарать тет, пĕр пус окçа тӳлемесĕрех. Çавǎн пик пĕр çын вǎт чǎртнǎ тет те çывǎрма выртнǎ тет. Хǎй выртнǎ чохне пĕр Арçури пычĕ тет ǎшǎнма, томтирне астумасǎр хǎварнǎ тет. Ко çын çав томтире тǎхǎнса темле макаçǎнсенчен кĕрсе тавар илсе тохса тем пик пойса кайнǎ тет. Толькке хывса пǎрахма йорамас тет о томтире. Çав çын пĕр холаран таврǎннǎ чохне пит ǎшǎ полса орапа çине хывса хонǎ тет те, çавра çил пычĕ тет те Арçури томтирне вĕçтерсе кайрĕ тет. Çавǎнтанпа вара ĕнтĕ халь никам та топаймас тет çав томтире.

## 967

Усалǎн ачи Арçури патне хĕр пǎхма кайнǎ. Арçури хĕрĕ патне пырсан кусем: «Лашине ǎçтан кǎкарас?» — тесе ыйтнǎ. «Хǎть çулларан, хǎть хĕллерен кǎкарǎр», — тесе каларĕ тет. Кусем: «Мĕскертен кǎкарма калать ку?» — тесе тǎнǎ. Юпаран кǎкарнǎ та пӳрте кĕнĕ. Каччǎсем: «Аçу ǎта кайрĕ?» — тесе ыйтнǎ. «Ытла инçех кайман!» — тет. «Хǎçан килет?» — тенĕ. «Тӳрĕ килсен виç сахатран килет, тавра килсен пĕр сахатран килет», — тенĕ хĕрĕ.

Тата унтан: «Эсир мĕн çисе пурăнатăр?» — тесе ыйтаççĕ. «Ир çинчен чĕпĕ кучĕ, каç пулсан пĕç хушши», — тет. Арçури таврăнчĕ те унтан ыйтаççĕ: «Санăн хĕр ăслă-и, ухмах-и? Эпир килсессĕн лашине ăçтан кăкарас тесе ыйтрăмăр та, хăть çулларан, хăть хĕллерен кăкарăр терĕ». — «Çук, ман хĕр ухмах мар çав, хăть урапаран, хăть çунаран кăкарăр тесе каланă сире», — тет. «Тата аçу хăçан килет тесе ыйтрăмăр та, тӳрĕ килсен виç сахатран килет, куккăр килсен пĕр сахатран килет тесе каларĕ». — «Манăн хĕр ухмах мар çав, тӳрĕ килсен лапра ăшне кĕрсе лармалла», — тет. «Эсир мĕн çисе пурăнатăр тесе ыйтрăмăр та, ир çинче чĕпĕ кучĕ, каç пулсан пĕç хушши терĕ». — «Ăна каланăшăн ухмах пулчĕ-и ман хĕр? Эпир ир çинче çăмарта çиетпĕр, каç пулсан сĕт суса çиетпĕр тесе каланă вăл сире», — тет. Вара çаксем Арçури хĕрне лартса кайнă.

## Аçтаха

### 968

Аçтаха çĕлен ӳссе çитсессĕн халăха сиен тăвать: сывлăшĕпе туртса илсе çăтать. Çавăнпа Турă çĕклесе илет ăна çил-тăвăлпала, пĕлĕтпелен, хĕстерсе илет çӳле çиçĕмпелен.

Аçтахаран пурăнсан-пурăнсан Юхха пулать, çавă çын сӳретне* кĕрет, камăн лайăхрах арăм пур-и, хĕр пур-и, ăна илешет-илешет те чирлеттерет, илешнĕ çынни типсе хăрать те вилет вара.

### 969

Аçтаккă — усал; вăл çынна ерсен çын усала каять: çӳреймес, ĕçсе тăнă чухнех хăй типсе каять.

### 970

Çын нумай шухăшласан, хуйхăрсан ăна Аçтаха ернĕ теççĕ. Кашни каç çур çĕр тĕлĕнче вут кăларса вĕççе анать тет те трубаран кĕрет тет. Ку Минисса акка патне вара Аçтахи вилнĕ ывăлĕ Петя пулса килет тетчĕç. Минисса акка вара çĕрĕпе калаçатчĕ унпа.

Аçтахана килме парахтарас тесен пӳртĕн тăвată кĕтессинчен те çӳле пăшалпа пемелле тет. Вара Аçтахи çилленнипе пӳрт кĕтессине шан-н! тутарса перет те çухалать тет.

Тепре Аçтаха пирĕн аннене ернĕ пулнă. Упăшкин шăллĕ, çамрăк, 7 çулхи ача, вилсен кашни каç çĕрле: «Инке, уç-ха», — тесе чĕнетчĕ тет. «Кайса уçап — никам та çук», — тет.

### 971

Пирĕн пахча хыçĕнче пысăк çăл пур. Ĕлĕк çавăнта питĕ пысăк шурлăх пулнă. Унта кайăк хурсем çăмарта туса чĕпсем кăларнă. Мункун каç çак шурлăхри кӳлĕрен Аçтаха тухса кайнă тет. Вара хуран пек шăтăк пулса юлнă тет. Çак каç çĕрĕпех хĕрлĕ хăйăр юхнă тет. Çав шăтăкĕ халь те пур. Шăтăкне чул пăрахсан шăмпăрт! туса анса каять.

---

* Сăнне.

## Вĕреçĕлен

### 972

Чăвашсем Вĕреçĕлен пур теççĕ. Вăл, вĕçен кайăк пек, çĕрле вĕçсе вут тăкса çӳренĕ теççĕ. Вĕреçĕлен çынна та ернĕ, юратакан çын пек пулса пынă. Арçын патне хĕрарăм пулса, хĕрарăм патне арçын пек пулса çӳренĕ. Вĕреçĕлене этемрен кантăр вăррипе пистернĕ. Çын кантăр вăрри çисе ларнă. Леш мĕн çиетĕн тесе ыйтмассерен çынни пыйтă-шăрка çиетĕп тесе каланă тет. Вĕреçĕлен виççĕ-тăваттă пынă çĕре çапла кантăр вăрри çисе ларсан вăл çапла писет тет.

### 973

Вĕреçĕлен питĕ усал сывлăш теççĕ. Вăл нумай çынна вĕлерет теççĕ. Ăна çамрăк ачаран пулнă теççĕ, качча кайман хĕрсем ача тусан ăна кăтартмасăр пытарса вĕлереççĕ те çавăнпа Вĕреçĕлен пулать теççĕ, вăл кирек кама та ерсе вĕлерет тет. Пĕр-пĕр водянка пулса чирлесен е вилсен Усал ерсе вилчĕ теççĕ, вăл чиртен чĕртме е вĕлерекен, е суракан шыраççĕ, унпа та асапланса чĕрĕлмесен тин вара лекĕр патне каяççĕ.

### 974

Вĕриçĕлен хĕрсем ача туса шыва кĕртиччене вĕлерсе пытарнă ачаран пулать тет. Вĕриçĕлен хĕрарăма та, арçынна та çыпçăнать. Çавăнтан хĕрарăм Вĕриçĕлен те, арçын Вĕриçĕлен те пулать. Вĕриçĕлен хăй çыпçăннă çын килне çитерехпе хăйĕнчен тăкăнса пыракан вут-хĕмне çухатать те çынна курăнмасăр çав çĕлен ернĕ çын пурăнакан пӳрте пырса кĕрет тет. Хăшĕ-хăшĕ çав çын пурăнакан пӳрт навралла тимĕр карта хываççĕ тет. Ун пек чухне Çĕлен вара çӳлтен пӳрт тĕлне çитсен вутне пачах пĕтерет те çавăнтах çав пӳрт çине анать тет. Вĕриçĕлен ернĕ çын начарланса шурса каять.

### 975

Вĕреçĕлен ахаль çĕлен манирлех пулать, кирлĕ чухне вăл çунатлă пулать, вĕçсе те çӳрет тет. Вĕçсе çӳренĕ чухне çĕрле вут хĕлхемсем кăларса çӳрет теççĕ; çавăнтан ăна Вĕреçĕлен иккенне пĕлеççĕ. Вĕреçĕлен урçа арăм патне, упăшкишĕн пит йĕрекенни патне илешет имĕш. Вăл çын пулса ун пӳртне кĕрсе упăшки пулса калаçать тет, чуптăвать тет, çумне выртса сывăрать тет. Вĕреçĕлен иккенне пĕлес тесен, унăн çулăмĕ çук имĕш, çавăнтан пĕлме пулать теççĕ. Вĕреçĕлене ваттисем — вăл усал сывлăш, чирлĕ çынсене çулăхать теççĕ. Кам çурчĕ тĕлне вĕçсе аннине астума хушаççĕ. Вăл вĕççе аннă чухне вут хĕлхемĕсем пăр-р! саланса каяççĕ пулать.

### 976

Ĕлĕк вĕреçĕленсем те пулнă тет. Хĕрсем вăрттăн, никама каламасăр ача çуратса çак ачана е çырмана чавса пытарнă, е вăрмана кайса пăрахнă, е камăн та пулин ампарĕ айне, е шăва пăрахса хăварнă тет. Вара çак ача вун сакăр çултан Вĕреçĕлен пулса тăрать тет.

## 977

Çын вутра çунать, Вĕриçĕлен çавăнтан пулать тет.

## 978

Ĕлĕк пĕр хĕр качча каймасăрах ача çуратнă тет. Виçĕ кун иртсен каçхине ачине кăмакана пăрахнă тет те вут чĕртсе янă тет. Çавăн чухне труба витĕр темĕнле çулăм пек япала çĕлен пек авкаланса тухса кайрĕ тет. Вара çакăн хыççăн çав çулăм пек япалана Вĕреçĕлен теме тытăннă тет. Вĕреçĕлен ялан çав ача çурални виç кун иртсен çур çĕр тĕлĕнче хăйсен пӳрчĕ патне килсе трубаран кĕрсе каять тет. Çав япала халĕ те тухать теççĕ.

## 979

Акă хĕр ача качча каяччен венчетсĕр, яшăпа ерсе пурăнса, çын сисмесĕр, вăрттăн йывăр çын пулса ача çуратать. Вара çав çуралакан ачана çын сисиччен вĕлерет те пĕр-пĕр сарай е çурт, кĕпер айне е йăвăç хăвăлне кайса пытарать. Çакă пытарнă ача пĕчĕккĕн, хуллен çĕр айне пытармантан çунатлă пулса ӳссе çитĕнет. Вун саккăр-вун тăххăра çитсе хăй çуралнă йăхне çичĕ сыпăкран шыраса ерет, ывăл ача — хĕре, арăма ерет; хĕр — яшăпа авланнă çынна та ерет теççĕ.

Çакă хĕртен вăрттăн, çын сисмесĕр çуралнă ача, çĕр айне пытарнă пулсан, ачи Вриçлен пулман, çĕре пытармантан, çурт çунаттине пырса çӳллĕ вырăна хунăран çунатлă çитĕнсе Вриçлен пулнă теççĕ.

## 980

Вăл çуратса пăрахнă ачаран пулса кайнă тет. Вутпа çунса пырать тет. Çынна курсан кăшкăрса ячĕ тет те вутне йăтрĕ те тарчĕ тет.

## 981

Хĕр ачасем ача тăваççĕ те, çавсенчен Вĕриçĕлен пулать тет. Вĕсем 17—18 çул пурăнсан çӳреме пуçлаççĕ. Вĕсем хĕлхем тăкаççĕ. Яш-кĕрĕмсем чирлесен вăл вĕсем патне пырать, трубаран кĕрет. Тумтирĕ унăн çăм пулнă тет. Тумтирне хывсан çын пекех тет.

## 982

Хĕрсем йывăр çын пулсан, ача çуратса ачине пĕр-пĕр çĕре пăрахсан çав ача вара Вĕриçĕлен пулса тăрать тет. Вăл вара пĕр-пĕр çыннăн килне кайса ерсен унтах пурăнать тет. Вăл çĕрле çав çынсен пӳрт çине вĕççе пырать тет те кушак пулса тăрпаран пӳрте кĕрет тет. Хĕрарăм пулсан пӳрте арçын пулса кĕрет тет, арçын пулсан хĕрарăм пулса кĕрет тет.

## 983

Вĕриçĕлен вилсе çуралнă ачасенчен пулать, вăл вара сывлăш çинче вĕççе çӳрет. Вăл пĕр-пĕр çын патне пырсассăн çын пăсăлать теççĕ.

## 984

Ĕлĕк вĕриçĕленсем нумайччĕ. Тимоксемпе юнашар пĕр ват хĕр пурнатчĕ, ашшĕ-амăшĕ ватăлса вилнĕ. Яланах çав тĕлелле кĕретчĕ çав Вĕриçĕлен.

Пăрахнă ача Вĕриçĕлен пулать иккен, вара вăл трубаран кĕрет тет амăшĕ патне.

## 985

Хĕрсем йывăр çын пулсан, ача çуратса ачине пĕр-пĕр çĕре пăрахсан, çав ача вара Вĕреçĕлен пулса çӳрет тет. Вĕреçĕлен вутăн-хĕмĕн тăкăнса вĕçсе çӳрет теççĕ. Вăл вара пĕр-пĕр çыннăн килне кайса ерсен унтах пурăнать тет. Вăл çĕрле çав вĕреннĕ çĕре пӳрт çине вĕçсе пырать тет те кушак пулса тăрупаран пӳрте кĕрет тет. Çавна хуçисем сиссессĕн сивĕнтĕр тесе пӳртре сысна çухăртма тапратаççĕ тет те, вара Вĕреçĕлен пӳртрен тухса тарать тет. Е тата пӳртре сыхласа ларса пăшалпа персен ача пек ĕсĕклесе макăрса каять тет. Çапла вара пĕр виçĕ каç тусан вăл вара пыми пулать тет.

## 986

Ваттисем каланă тăрăх, çут тĕнчере Çутă пур тет. Вăл кам качча каймасăр ача çуратса ăна вĕлерет, çавсен чунĕсенчен тата пăрахнă ача чунĕсенчен пулать тет. Вара ку Çутă кам патне илешет, çавă ӳкекен чире (припадкăна) ерет тет. Ку Çутă, — кам упăшки, ачи, çывăх çынни вилсен сывă çын уншăн хытă хуйхăрса макăрать, — ытларах çавăн патне илешет тет. Кун çинчен вăхăтра çынна каласа памасан тата вĕрӳç-юмăççене сиплеттермесен ку çын кашни каçах çав Çутта кĕтме пуçлать тет. Çутă çав çын куçĕ умне вăл камшăн макăрать, çавăн мĕлки пулса пырать. Çын вара хĕн-асапне кайса, типсе-хăрса вилсе каять.

## 987

Хĕрсем качча каймасăрах йывăр çын пулаççĕ те ачине çуратса пĕр-пĕр çĕре пăрахаççĕ, çав ача вара Вĕриçĕлен пулса тăрать тет. Вăл çав çуратса пăрахнă хĕрех кайса ерет тет. Ăна питĕ хĕн кăтартма пуçлать, лешĕ вара хĕне кайса вилсе те каять теççĕ.

Вĕриçĕленрен хăтăлас тесен ăна вутлă кĕлпе сапмалла тет.

Вĕриçĕлен хĕр патне савнă каччи, каччи патне юратнă хĕрĕ, упăшки патне арăмĕ, арăмĕ патне упăшки пулса пырать тет.

## 988

Пĕрре çапла çамрăксем вăййа пухăннă тет (çулла пулнă ку ĕç). Пĕр хĕрĕ юлашки вăхăтра çамрăксенчен ютшăнма пуçларĕ тет, вăййа та тахçантан пĕрре кăна тухкалать тет.

Çапла çамрăксем пĕрене çине хăпарса ларнă тет те çĕрĕлле выляса лараççĕ тет. Унччен те пулмаç, Вĕриçĕлен çак ютшăннă хĕрсен кил картине çутатсах вĕçсе кĕрсе кайрĕ тет. Çамрăксем тепĕр кунне ятарласах сых-

лама килчĕç тет. Вĕриçĕленĕ тепĕр кунне те вĕçсе пычĕ тет. Кун хыççăн тепĕр кунне çамрăксем çак хĕр патне киле кайрĕç тет те веçех ыйтса пĕлчĕç тет.

Вара хĕрĕ макăра-макăра хăй хĕр пуçăн ача çуратса çырмана чавса чиксе пăрахнине каласа пачĕ тет.

Вĕриçĕленсем çавăн пек хăйне пăрахнă хĕрарăмсене асаплантарса вĕлереççĕ тет.

## 989

Вĕреçĕлен вăл пĕр-пĕр хĕр ача туса пăрахнинчен пулать. Çав пăрахнă ача вĕçсе, вут пек курăнса çӳрет. Вĕреçĕлен вăл кам та пулин хĕр е ывăл ача туса пăрахнă пулсан, çав вара хăй амăшĕ патне кайса çыпăçать те ăна хĕн кăтартса вĕлерет. Хĕр ача туса вĕлерсе пытарнă пулсан вара çав ача арçынна çыпăçса хĕн кăтартса вĕлерет.

Вĕреçĕлен çинчен чăвашсем ак çапла калаççĕ. Пĕрре çапла пĕр çыннăн хĕрĕ хĕн курнă. Çак çын каç çывăрнă чух пĕр яш-кĕрĕм пекскер çав хĕр патне кĕрсе кайнине курнă. Тепĕр каçĕнче ку çын тула тухса хурал тăнă. Çур çĕр çитсен ку çын пĕр çутăскер вĕçсе пынине курнă. Çав çутăскер вĕçсе пырса ку çын кил хушшине ӳкнĕ. Кĕт* тăхтасан вара çав çутăскер çутă тумтирне хывса пĕр ампар кĕтессине хурса хăварнă та пӳрте яш-кĕрĕм пулса кĕрсе кайнă. Çын, ку кĕрсен, тумтирне илнĕ те тарнă урăх çĕрелле. Вара çав ача, тухсан, шыранă-шыранă çутă тумтирне — тупайман. Ку çын вара ăна тумтирне кăтартнă.

Кайран çав ача çав çынна ак çапла каланă:

— Санăн хĕрӳ мана çуратсан пĕр çăла кайса ячĕ, эпĕ çав ача пулап, эпĕ ăна вĕлерсен вăл вара ман çылăха илет, — тенĕ.

Çын ку ачана тумтирне панă та, çав ача вара çавăнтах тăхăнса вĕçсе кайнă.

## 990

Ĕлĕк пĕр çын Вĕреçĕлене курса пăхса тăнă. Вĕреçĕлен çĕре анса вутлă тумтирне хуса хучĕ тет те хĕн курса пурăнакан çын патне кĕрсе кайрĕ тет. Пăхса тăракан çынни Вĕреçĕлен тумтирне илсе пытарнă. Вĕреçĕлен тухсан тумтирне тупаймасăр макăрма пуçларĕ тет. Вара çынĕ тумтирне илсе тухнă. Вĕреçĕленĕ пĕр чашăк ылттăн пырса тыттарчĕ тет. Тепĕр ирхине пăхсан нимĕнле ылттăн та çук тет. Вара çынĕ ыр курайманĕ тет çавăн хыççăн. Хĕне кĕрсе кайса часах вилчĕ тет.

## 991

Пĕр хĕр хĕн курса пурăнать. Начарланнăран начарланса пырать çак хĕр. Пиччĕшĕ калать: «Йăмăка Вĕреçĕлен ернĕ полмалла, — тет, — ахальрен полас çок, — тет, — тавай ман сыхлас», — тет. Каç полсан амбар хыçне карĕ те Вĕреçĕлен килессе сыхласа ларать. Хăй Вĕреçĕлен ялкăштаттарса çутатса вĕçсе килет. Амбар хыçне çиттĕр те çиялти кĕпине хуса амбар хĕрне пытарчĕ. Хăй чипер яш-кĕрĕм пулса хĕр патне кĕрсе карĕ. Унччен те полмарĕ, çак Вĕреçĕлен хĕре йăнăштарма та тапратрĕ.

* Кăшт.

— А-а, ку манӑн йӑмӑка асаплантарса порнать-иҫ, постой, — терӗ пиччӗшӗ хӑй ӑшӗнче.

Вӗреҫӗленӗн шупӑрне амбар хӗрнчен илчӗ те пӳрте кӗрсе карӗ. Кун ҫинчен хӑй никама та ним те шарламарӗ, шарламасть те.

Вӗреҫӗленӗн хӗр панчен тохса каймалли вӑхӑт та ҫитрӗ. Пычӗ шопӑрне илме. Шопӑр ҫок. Вара ҫак Вӗреҫӗлен вӗҫсе каймалли та полмарӗ. Ҫапҫарамасах хӗрӗн пиччӗшӗ патне кӗчӗ.

— Ман шопӑра эсӗ илнӗ, пар мана, — тет.

— Памастӑп, сана хам патрах усратӑп, — тет лешӗ.

Вӗреҫӗлене костюм илсе пачӗ. Леш тӑхӑнчӗ те ытарма ҫок ача полса тӑчӗ.

Ҫаксен ялӗнче той полнӑ. Пиччӗшӗ Вӗреҫӗлентен полнӑ ачая тоя илсе карӗ. Ку йот ача полса тӑчӗ ӗнтӗ, палламаҫҫӗ. Хӗрӗн пиччӗшӗ апли-каплине никама та каламасть. Тойра ҫаксене сӗтел хошшине кӗртсе лартрӗҫ. Вӗреҫӗлен ача куна:

— Манӑн солахай холпоҫҫи орлӑ ҫак сӗтел ҫине пӑх-ха, — терӗ.

Хӗрӗн пиччӗшӗ Вӗреҫӗлен ача холпоҫҫи орлӑ пӑхрӗ те: сӗтел ҫинче йӗри-таврах мырякаллӑ усалсем апат ҫиса-ӗҫсе лараҫҫӗ.

— Куратни? — терӗ.

— Куртӑм, — терӗ ку.

Капла полчӗ. Халӗ качча каякан хӗре килтен киле кӗртсе ҫӳренӗ ҫӗре корса ҫӳреме ҫак ачая илсе карӗ. Ӗлӗк пӗр киле кӗртсен ҫав качча каякан хӗр ҫумне сӗтел хушшинче ют ачая лартнӑ. Ку ют ачаях ӗнтӗ, лартрӗҫ. Хӗрӗ тултарнӑ стакана Вӗреҫӗлен ачана пачӗ. Ку стакана тыртрӗ те леш ҫынсем илтмелле ҫапла каларӗ:

— Спаҫҫип сана, апай, ҫак стакана панӑшӑн. Эпӗ те халӗ эсӗ качча кайса ачаллӑ-пӑчаллӑ пулнӑ пек пулмаллаччӗ. Только эсӗ хӗр чухне мана туса вӑрмана илсе кайса йываҫ хӑвӑлне чикрӗн. Халӗ мана ӗмӗрех ҫанта порнмалла турӑн, — терӗ.

Ҫак сӑмахсене илтсен пурте тӗлӗнсех карӗҫ. Кусем иккӗшӗ хыҫҫӑнах килнелле тохса карӗҫ.

— Но, халӗ мана хамӑн шопӑра пар, манӑн киле каймалла, — терӗ Вӗреҫӗлен.

Хӗрӗн пиччӗшӗ тытса тӑмарӗ, Вӗреҫӗлене шопӑрне пачӗ. Вӗреҫӗлен костюмне хуса шопӑрне тӑхӑнчӗ те валтан штан кӗнӗ ҫавӑнтанах ялкӑшса ҫутатса тохса карӗ.

Ҫавӑнтан вара ҫав Вӗреҫӗлен хӗр патне пач килме пӑрахрӗ. Хӗр те сывалса валтанхи пекех полчӗ.

### 992

Ун чух ҫуллаччӗ. Эпир урам хушши шӑлаттӑмӑрччӗ. Сурӑх кӗтӳ яраҫҫӗ. Ҫынсем икшерӗн-виҫшерӗн пӳрт хыҫӗнче лараҫҫӗ. Ҫав хушӑра ман старик Миккул: «Вӗри! Вӗри! Ӑҫтан тухрӗ-ке, эй!» — тесе кӑшкӑрса ячӗ. «Илле ампар хыҫӗнчен!» — терӗҫ ларакансем.

Хайхискере эпир те пӑхса тӑма пуҫларӑмӑр. Хӑй мӑн пуҫлӑ, хура милке ҫӳҫлӗ, этем питлӗ, ҫӑварне кӑшт уҫнӑ та ҫӗрелле хӗм тӑкса пырать, кӗлетки хыҫалта кӗвенте пек тӑсӑлса пырать. Ҫавӑ пӗр йывӑҫсем ҫӳллӗш ҫырма патнелле вӗҫсе пырать. Шыв урлӑ вӗҫсе каҫрӗ те ҫыран ҫине анса тӑчӗ, пиртен пӗр ҫӗр чалӑш пур-и, ҫук-и — ҫапла анчах. Ҫерем ҫине ан-

санах кăвак хур пулса тăчĕ. Хур аçи пек пăркаланса утса карĕ-карĕ те шăтăка кĕрсе кайса çухалчĕ.

Кайран Иллен амăшĕ каласа кăтартрĕ. Вĕсем патĕнче хваттерте сысна кĕтӳ пăхса пурăнакан Темликасси хĕрĕ пурăннă. Çав хĕр йывăр çын пулнă. Хырăмне пăрахнă та ачине ампар хыçĕнчи сӳс хăлхи купи ăшне чикнĕ. Тем ĕмĕртен, вăл хĕр ача кайсан, кусем сӳс хăлхине тăкма шухăшланă: тиеме тапратнă та ача шăмми-шакки тухнă. Ăна вĕсем сӳс хăлхипе пĕрле шыв урлă каçса çырмана кайса пăрахнă. Вăт çав ачаран Вĕриçĕлен пулнă.

## 993

Мана ку юмаха вată çын эпĕ пĕчĕккĕ чухнех каласа панăччĕ. Вăл çамрăк чух пĕчченех улăха лаша çитерме каçхине выртмана кайнă. Лашине симĕс курăк çине тăлласа ярсан хăй çерем çине выртнă. Çур çĕр тĕлĕнче ун патнелле Вĕриçĕлен вут-хĕмне тăкса вĕçсе килнĕ те таса улăхра ӳксе куçран çухалнă. Нумаях та вăхăт иртмен — Вĕриçĕлен ӳкнĕ вырăнта этем мĕлки утă капанне кĕрсе çухалнă. Выртма пынă çын утă капанĕ патне пынă та Вĕриçĕленĕн тумтирне тупса урăх вырăна пытарнă. Ирхине ирех çав Вĕриçĕлен питĕ хитре каччă пулса çак çын умне пырса тăнă. Вĕриçĕлен тем пек тархасласа тумтиррине ыйтнă.

— Тархасшăн, — тенĕ вăл этем чĕлхипе, — манăн çи-пуçа парăр.

— Эсĕ мана уншăн мĕн паратăн? — тесе ыйтнă çынни.

— Мĕн кирлине пурне те паратăп. Анчах та мана кĕттерсе ан тăрăр. Манăн вăхăтра çитмелле. Часрах парăр.

— Мана нимĕн те кирлĕ мар, — тенĕ çынни. — Эсĕ мĕншĕн Вĕриçĕлен пулса çӳретĕн, çавна кăна кала.

— Мана, — тенĕ Вĕриçĕлен, — Виççырма хĕрĕ Наçтук хĕр пуçăн çуратнă та, намăс пуласран хăраса вĕлернĕ те çырмана кайса пăрахнă. Çавăнтанпа эпĕ çутă кун кураймастăп. Вĕриçĕлен пулса çӳретĕп. Мĕн ватăлса виличченех манăн çапла Вĕриçĕлен пулса çӳрес пулать, — тенĕ.

Çакăн хыççăн çынни Вĕриçĕлене тумтирне панă та, вăл вĕçсе кайнă.

## 994

Çĕнĕ çул каçхине икĕ каччă кам мунчана кайма пултарать тесе тавлашнă тет. Тавлашсан-тавлашсан пĕр ачи мунчана кайма килĕшнĕ. Мунчана кĕрсен ăна пĕр хĕр ыталаса илчĕ тет. Ыталасассăн: «Эсĕ мана качча илетĕн-и? — тесе йăлăнтарма тапратрĕ тет. — Качча илместĕн пулсан çакăнтах вĕлеретĕп», — тесе калать тет. Вара ача качча илĕп тесе килĕшнĕ тет. Кайран çавăн хыççăн качча ил тесе кашни каçах ача патне пыма пуçларĕ тет. Çавăн хыççăн çав Вĕреçĕлене ачапа пĕрле молебĕн турĕç тет. Вара Вĕреçĕленрен хĕр пулса тăчĕ тет. Вара ачи çав хĕре качча илчĕ тет. Вĕсем вара питĕ лайăх пурăнатчĕç тет. Эсир мĕн çисе пурăнаттăрччĕ тесе ыйтсан, çĕр çине ӳкнĕ çăкăр тĕпренчĕкĕсене пухса çиеттĕмĕрччĕ тесе калатчĕ тет. Вĕреçĕленсем яланах хăйсен Вĕреçĕлен пулса çӳремелли срукĕ тухнă çĕрелле çынсене хытă тапăнма пуçлаççĕ тет. Вара çынсем хĕне кайма пуçлаççĕ тет.

## 995

Ĕлĕк вĕреçĕленсем час-часах çын куçне курăннă. Халĕ вара машина, трактор, тимĕр нумай пулнипе вĕсем çухалнă. Хĕрлех ача çуратса ачине пĕр-пĕр çĕре пăрахсан çав ача Вĕреçĕлен пулса тăрать. Шалчи пĕвине ĕлĕк пĕр хĕр ачине янă. Çавăнпа та халĕ çуркунне ку çырмара çур çĕр тĕлĕнче пĕчĕк ача йĕни илтĕнет.

Пĕрре Вĕреçĕлен пирĕн ялти Наçтаçа ернĕ иккен. Аякран вуттăн хĕмленсе вĕçсе килет, хӳри çунса пырать. Пӳрте тăрпаран кĕрет те хитре каччă пулса тăрать. Çавăн пек кашни каç пынă Наçтаç патне. Наçтаç вара кашни кун чирлесе, нишленсе пырать тет.

Çавна кура икĕ арçын Вĕреçĕлене тăрпа кутĕнче сыхласа ларчĕç тет. Çур çĕр тĕлĕнче Вĕреçĕлен вĕçсе килет те каччă пулса пӳрте кĕрсе каять. Арçынсем тытаççĕ те Вĕреçĕлен тирне чĕрсе çунтарса яраççĕ.

Çакăн хыççăн кăна Наçтаç сывала пуçларĕ тет.

## 996

Кукаçин ашшĕ утсем пăхма кайнă тет. Утсем çерем çинче çӳреççĕ тет. Çывăхрах çамрăксем вăйă выляççĕ тет. Хальхи* мучи пĕр йывăç хыçне выртнă та çамрăксем çине пăхса выртать тет.

Çывăхрах кӳлĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет, ун пуçĕ тăррипе Вĕреçĕлен иртсе кайрĕ тет. Вăл çырма хĕрне вĕçсе анчĕ тет те тумне улăштарса каччă пулса тăчĕ тет. Çырма хĕрринче пĕр пысăк юпа ларатчĕ тет. Çав юпана туртса кăларса тумне юпа шăтăкне пăрахрĕ тет те юпана каялла кĕртсе лартрĕ тет.

Хальхи каччă ял еннелле утрĕ тет. Мучи çамрăксем патне кайса вĕсене пурне те çырма хĕрне илсе пытăм тет. Пулса иртни çинчен каласа патăм тет.

Пурте харăссăн юпана аран туртса кăлартăмăр тет. Шăтăкра Вĕреçĕлен тумĕ выртать тет. Вара ăна çунтартăмăр тет.

Автан пĕрре авăтса ячĕ тет те, каччă çырма хĕрнелле килет тет. Мучи патне пычĕ тет те: «Мучи, ман тумтирпе мĕн тăван?» — тесе ыйтать тет. Хăй макăрать тет: «Пар, мучи. Эп унсăрăн вĕçеймес. Пире Турă çапла çӳретет. Вăл пире Турă туса панă тумтир. Мана апай çуратса пытарнă сакайне. Пире шыва кĕртмен. Çавăнпа пире тумтир Турă панă», — тет.

12 çула çитсен хĕр пуçăн тунă ачасене хăшĕсем çава çине пытарман, çавăнтан Вĕреçĕлен пулса кайнă тет.

## 997

Вриçлене çынтанах пулнă теççĕ. Ĕлĕк пĕр хĕр ача тунă пулать. Ачине çĕр чавса пытарнă пулать. Вара çав ачана Шуйттан йышăннă. Шуйттан вара çав ачана Вриçлен тунă пулать. Çав ачана туса пытаракан хĕр çак ачана тусан кайран качча кайма тытăннă тет. Йĕме лартсан кусен картишне вут аннă пек пулать тет, ăна шăллĕ курнă. Аннă вут кĕлет айне кĕрсе каять тет. Кĕлет айĕнчен çитĕннĕ ача пулса тухать тет. Ку кĕлет айĕнчен тухсан пăхса тăракан ача кĕлет айне кĕрсе пăхать тет. Кĕлет айĕнче

* Хайхи.

вут тӗслӗ тумтир выртать тет. Ку ача ӑна илсе пытарса хурать тет. Хайхи ку кӗлет айӗнчен тухиччен Вриҫленрен пулнӑ йӗкӗт пӳртре ташлать тет. Ку ача пӑхса тӑрать тет. Ташласа пӗтерсен йӗме лартнӑ хӗр патне пырса кӑкӑрне ҫыртса илет те калать тет: «Эй, анне, эсӗ мана турӑн та ҫӗр айне пытартӑн, мана тӗне кӳртмерӗн, Усала патӑн. Халӗ мана нумай ҫынна усала кӑлармалла турӑн», — тенӗ. Кӑкӑрӗнчен тепре ҫыртнӑ та тухса кайнӑ. Хай тумтирне пытарнӑ ача хыҫҫӑн тухнӑ. Ку кӗлет айӗнче тумтирне тупайман. Пытарнӑ ача: «Тупса парӑп, кам эсӗ?» — тенӗ. Лешӗ каланӑ: «Эп Вриҫлен, ҫынна ҫыпҫӑнса аскӑн ӗҫ туса вӗлерекен», — тенӗ. Вара тумтирне тупса панӑ.

Ҫавӑн пек пӑрахнӑ ачасем пурте — тӗне кӗменнисем, минчетсӗр упӑшкапа тунисем Вриҫлен пулать тенӗ ваттисем. Хальхисем мар, авалхисем. Вриҫлен ерсен ӗлӗк пит асапланнӑ вӗсем, юмӑҫа кайнӑ, вӗртнӗ-суртнӑ, апла та кайман. Унтан ӑна утӑ ҫинче вырттарнӑ. Утӑ ҫинче выртнӑ чух Вриҫлен пырайман. Ахаль ҫӗрте выртнӑ чухне пырса муталанӑ.

Вӗсем вара утӑ уканӗнчен пӗрер курӑкӑн кашни суртне илсе урӑх ҫӗре вырттарса ҫумне хурса пӑхнӑ. Вара вӗсем пӗр курӑка пӗлнӗ. Вӑл курӑк хӗресле пулнӑ. Тӑрри те, ҫулҫисем те хӗресле пулнӑ. Ҫав курӑка пуҫ айне хурса ҫывӑрсан Вриҫлен пырайман. Вӑл курӑка питрав кунӗ хӗвел тухиччен кайса татнӑ. Ҫавӑнпа ӑна Питрав хӗрес курӑкӗ тенӗ. Вриҫлен ерсен хӑшӗ халӗ те ҫав курӑкпа тӳрленеҫҫӗ тесе калаҫаҫҫӗ.

### 998

Вӗреҫӗлен трубаран кӗрет. Пӗр Кӗртекасси ҫынни номайччен выртрӗ. Ҫан патне Вӗреҫӗлен пыратчӗ тет. Выртнӑ ҫӗрте ҫавӑ: «Юшкӑ уҫӑр, юшкӑ уҫӑр», — тесе калатчӗ тет.

### 999

Вӗриҫӗлен ак мӗнле япала: унӑн ури чӑх ури манирлех, вӑл ҫунатлӑ, ик-виҫ пуҫлӑ пулат, тата унтан вара унӑн хӳри вӗҫӗ чукмар пек чӑмӑрккаллӑ пулат теҫҫӗ.

### 1000

1941 ҫулта Вӗреҫӗлен куртӑм. Янташ енчен хӗлхем тӑкса килчӗ. Хӑй ҫап-ҫутӑ, ҫӳлте вӗҫсе килчӗ те ҫава ҫине ларчӗ. Унӑн пӗр пуҫӗ мӑнтӑр, хӳре пекех, хӑй кӗвенте пек.

### 1001

Вӗреҫӗлен ерсе вӑл ҫынна. Порнат, порнат, типсе каят, типсех вилет. Вӗреҫӗлен хӗр патне каят качча полса, арҫын патне килет хӗр полса; хӗр патне пырсан онпала косат этем пек, он патне килнӗ каччӑ пек. Чир онашкал пор.

### 1002

Вӗриҫӗлен вӑл — Арҫури хӑвачӗ тенӗ. Вӑл хӗм тӑкса питӗ хытӑ каять. Ҫтаппан вилнӗ тет те, арӑмӗ патне чунӗ ҫын пек килет тет. Хӑй хӳреллӗ, каюра пек тет. Ури каялла. Кайран арӑмӗ ухмаха ермех тытӑннӑ.

## 1003

Пĕррехинче анне, фермăра ĕçленĕ чухне, Вĕреçĕлен куртăм тет. Вăл уйри витери сыснасене улăм сарса пама каяттăмччĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет, вите тăрринчен Вĕреçĕлен тухса кайрĕ тет.

Хăй кĕпе кĕвенти тăршшĕ тет. Пуçĕ сăра хуран пек. Кучĕ шĕвĕр, хыççăн хĕм кăларса пырать тет. Анне ăна курсанах çари çухăрса пĕшкĕнсе лартăм тет. Кайран пуçа çĕклетĕп те, унта ним те курăнмасть тет.

## 1004

Вĕреçĕленсем те ĕлĕк номай полнă. Вăл хĕрлĕ тĕслĕ, чăп-чăмăркка тит. Пĕлĕт тăрăх ярт-ярт вĕçсе çӳрет тит. Вăл çынсем патне мăрьерен кĕрет тит. Çынсенчен ăна пăшал персе ойăрнă тит.

## 1005

Вĕриçĕлене курнисем акă мĕн каласа параççĕ. Вĕриçĕленĕн пуçĕ пысăк, хӳри шĕвĕр — йĕке пек. Вĕçсе пынă чух ялт-ялт çулăм тăкса пырать. Вăл çынна ерет тет. Вĕриçĕлен çын патне кăмака мăрйинчен кĕрсе çӳрет тет. Вăл çынна ерсен çын асапланса пурăнать. Ун пек çынна вĕри ернĕ çын тенĕ. Çын ăшне усал сывлăш кĕнĕ тесе шутланă. Çав чир паралич пекех пулнă, анчах ĕлĕкхи çынсем вĕри ернĕ тесе каланă.

## 1006

Пĕрре каçпа вăрманта кăвать тавра лашасем çитерме тохнă ачасем лараççĕ тет. Вĕсен хошшинче пĕр старик пор тет. Çавăн чохне çӳлте Вĕриçĕлен йăлтăртатса, хĕм тăкса пырать тет. Çавна корсан старик: «Ачасем, камăн та полин сирĕн конта онкăллă çĕçĕ çок-ши?» — тесе каларĕ тет. Пĕр ача: «Манăн пор, мочей!» — тесе каларĕ тет. Вара старик çĕççе илчĕ тет те онки виттĕр темскер каласа кăвар кăларчĕ тет. Вĕриçĕлен чу! туса çак ачасем патне ӳкрĕ тет те çохалчĕ тет. «Ĕнтĕ шырăр, йот çын çок-и?» — тесе каларĕ тет старик. Шырама поçларĕç тет те аяккарах пĕр сăхманпа пĕркенсе выртакана корчĕç тет. Сăхманне оçса пăхрĕç тет те, пĕр хоп-хора, вотпоççи пек çонса кайнă арăм выртать тет. Вара палларĕç тет те вăл Вĕриçĕлен полнине пĕлчĕç тет.

## 1007

Вĕриçĕлен вăл каçхине çӳрет тет. Уйрăмах вăл ытлашши хуйхăракан çынсен килне пырать тет. Пырсан вара мĕн те пулин туса каять тет.

Пĕрре çапла çамрăксем пĕр карчăкăн килĕ умĕнче ларнă чухне çӳлтен çăлтăр евĕрлĕ çутă пуçлăскер вĕçсе анчĕ те икĕ йывăç хушшипе кăш-кăш! туса çаксен килне вĕçсе кĕрсе кайрĕ тет. Çак карчăк вăл упăшки вилнишĕн питĕ хуйхăрнă тет. Çавăнпа ун патне Вĕриçĕлен час-часах пынă тет.

## 1008

Вĕриçĕлен усал вăй шутне кĕрет. Вăл каçхине те, хăш-пĕр чухне кăнтăрла та курăнать тет. Вĕриçĕлен питĕ илемлĕ тет. Вăл пӳрте кĕрсе кайса сĕтел çинче утса çӳрет тет. Хăй вутăн-хĕмĕн курăнать тет. Утнă майăн

çав вут-хĕмне çапса пырать тет. Çав вут-хĕм çынна тивсе унăн пуçне анратса яма пултарать тет. Вĕриçĕлен çĕре ансан çанталăк пăсăлать теççĕ. Вĕриçĕлене тытма хăтланса пăхакансем те пулнă теççĕ. Анчах та вăл питĕ пĕçерет теççĕ. Е алла тăссанах çухалать тет. Пĕлĕт çине лаппăшпех хĕрлĕ ӳксессĕн Вĕриçĕлен çула тухнă теççĕ.

## 1009

Хĕрпе каччă пĕр-пĕрне юратнă тет. Ашшĕ-амăшĕ хĕрне урăх çынна качча панă. Анчах ун патне каччи Вĕриçĕлен пулса пырса çӳренĕ. Çапла вара Вĕриçĕлен аннă теççĕ. Кайран вара çав хĕр тăнне çухатнă. Ыйăх тĕлĕшпе вăл Çавал хĕрне кайнă. Автан авăтать тет те, Çавал хĕрринче тăра парать тет.

## 1010

Тата çапла кӳршĕсем патĕнче ларатăп. Сасартăк кӳршĕ хĕрарăмĕн аслă хĕр ачи кăшкăрса ячĕ: «Вĕриçĕлен! Çап-çутă». Амăшĕ: «И-и, ухмах, укçа тесе кăшкăрмалла ăна, кайран яланах укçаллă пулатăн», — тесе ятласа тăкрĕ.

## 1011

Пурте пĕлеççĕ Вĕриçĕлен тырра çунтарса янине тата тырă пуссисем урлă вут тăкса кайнине, çав çул вара тырă пулмасть теççĕ. Вĕриçĕлен вăл арçын та пулать, хĕрарăм та пулать тет. Вăл арçын патне хĕрарăм пулса пырать тет, хĕрарăм патне арçын пулса пырать тет, çавăнпа унтан питĕ сыхланмалла тет, мĕншĕн тесен вăл унăн юлташĕ пек пулса пырать тет.

Çав Вĕриçĕлен пĕр ял пуссинчен яланах иртсе каятчĕ тет. Çав ялсем Вĕриçĕлене яланах куратчĕç тет. Çын умне ансан вăл хуп-хура çын пулса çарамасăнах пыратчĕ тет. Вĕриçĕлене хăйне вăрçтарсан çынна часах йытă туса утланса каять тет те хăй çынни туса асаплантарса çӳрет тет. Хăйне пĕрре те вăрçтармасан тивмест тет.

## 1012

Пирĕн ялта пĕр çамрăк мăшăр пурăннă. Вĕсем аван, юратса пурăннă, анчах та вĕсен пурнăçĕ ăнман, упăшки вăхăтсăр вилнĕ. Виличчен малтан вăл арăмне урăх мăшăр ан туп тесе калать, ĕмĕр хăйне асăнма хушать. Хайхи кайса пытараççĕ. Каçхине арăмĕ, урама тухсан, темле япала хăйсен пӳрт тĕлĕнче вĕçсе çӳренине курать. Питĕ хăранипе вут-хĕлĕм пек çеç астăвса юлнă. Çавăн пек вара кашни кун килет тет. Пĕрмаях пĕр вăхăтра. Çавăн пек вара çултан-çул икĕ çул килет. Арăмĕ кашни каçах икĕ ачипе хăйсен пӳрчĕ тĕлĕнчен иртсе вĕçсе кайнине курма тухать. Пĕрмаях вăл темскер йăлтăркка япаласем пăрахса хăварнă тет, анчах нимĕн те çĕре ӳкмен.

Вăл вилсен тепĕр икĕ çултан хайхи арăмĕ качча тухать. Анчах вĕсем тепĕр упăшкипе нумаях пурăнаймаççĕ. Вутçĕлен хайхинче пӳрте лексе иртсе каять, пӳрт çунма пуçлать. Пурте çунса кайнă тет. Урăх вара Вутçĕлен килмен тет.

## 1013

Вуткайăк тăмана тĕслĕ, шăнкăрчран пысăкрах. Вуткайăк ăҫта пурăннине никам та пĕлни ҫук. Яла-мĕне вут тухас умĕн анчах пырать. Кăҫал мункунта Ҫĕн Пуянкассинче вут тухрĕ. Вут тухаччен пĕр-ик эрне малтан ҫунас килсем ҫинче вуткайăксем вĕҫсе ҫӳрерĕҫ. Пирĕн кӳрĕш матки: «Ҫав кайăксем яла килсен аван мар текен уна, у кайăк инкеке сисет теҫҫĕ», — терĕ.

## 1014

Ҫав Вутлă ҫĕлен иртсессĕн ҫулсем йывăр пулать, выҫлăхсем пулать.

## 1015

Ёлĕк эпир ача чохне каҫпа лашасем ҫытарма каяттăмăр. Эпĕ он чохне тăххăрта полнă. Ялти ҫамрăксемпе пĕрле эпĕ лаша отланса киле килме тохрăм. Эпир килнĕ чох тол ҫотăлса пыратчĕ. Номай та каймарăмăр, телехвон пролки ҫийĕпе Вĕриҫĕлен килет. Арҫын ачасем хавасланнипе онтан кăшкăрса ыйтрĕҫ: «Ăҫтан килен эс, Тусайран-и? Кам патне кайрăн?» Ҫак Вĕриҫĕлен поҫ тăрринченех каҫса кайрĕ. Хăй ик еннелле вот-хĕм сирпĕтсе пырать. Ҫомăр ҫонă пекех. Онăн ори те, ҫонатти те ҫок. Кĕлетки йăт поллли пек. Хӳреллĕ. Поҫĕ кошак поҫĕ пек вăр-р ҫавра, икĕ коҫĕ пор. Хăй ҫынсем колнăран поҫне ик еннеллле пăркаласа пырать. Коҫĕсем йăлтăртатнине ярт хамăр кортăмăр та-ха. Пирн ял орлă пĕр пек вĕҫсе Ойкас Йонтабаналла ниҫта лармасăр вĕҫсе карĕ. Айккинчен вара хăй тĕттĕм хора корнать.

## 1016

Вĕриҫĕлен килсе кайнине пĕлме алăк умне кĕл сапнă. Вара пӳртре ура ҫине тăрайман ҫын ҫеҫ пулсан та, пӳртре ура йĕрĕсем пулаҫҫĕ тет.

## 1017

Пĕррехинче Ятак Петĕрĕ килте пулман, унăн арăмĕ хытă чирлесе ӳкнĕ. Упăшки килне килсен унăн арăмĕ вырăн ҫинче выртнă. Марине уйăх ытла выртнă. Ятак Петĕрĕ ялти чи ватă хĕрарăм Униҫҫе кинемей патне кайнă. Униҫҫе кинемей ҫăкăр тĕпренчĕкне ҫип вĕҫне ҫыхса, аллипе тытса юмăҫ пăхнă. Кинемей Ятак Петĕрне мĕн тумаллине пурне те тăвăпăр тесе лăплантарнă. Униҫҫе ҫинчен пурте Вĕреҫĕлен — Усал ернĕ тесе калаҫнă. Ятак Петĕрĕ хуйхăрса питĕ йĕнĕ. Ватă кинемей Петĕртен ҫăкăр та, пĕр витре ҫăнăх та, укҫа та илнĕ, ун хыҫҫăн мăкăртатма тапратнă:

— Уй варринчи юман тытнă-и? Ун кутне нухрат памалла-и? Ҫав юмантан хĕн курать пулсан ҫăкăр сăмси силлентĕр, — тенĕ. Униҫҫе аллинчи ҫăкăр сăмси силленнĕ.

Ятак Петĕрне Униҫҫе кинемей ҫапла каланă:

— Маринене Вĕреҫĕлен хĕн кăтартать, ытла вăрăма тăсăлать, — тенĕ.

Вĕреҫĕлен вăл, хĕрарăм вăхăтсăр ача туса пытарнинчен пулать. Арҫын ача пăрахсан, хĕрарăм патне арҫын ача пулса пырать тет, арҫын патне

хĕрарăм пулса пырать тет. Вăл хĕвел анса тĕттĕм пулсан хăйĕн вутлă тумтирне хывать тет. Кайран вара, çав сын çумне çыпçăнсан ыталасах выртать тет. Тумтирне вăл пÿрт тăррине хывса хăварать тет. Вăл Вĕреçĕлен труба витĕр те, алăк витĕр те кĕрет тет. Вĕсенчен кĕреймесен кантăк е сакай шăтăк витĕр кĕрет тет. Вĕреçĕлен пÿрте ан кĕтĕр тесен çивĕч çĕçĕпе кашни алăкне е кантăкне хĕрес хумалла тет, труба çине çивĕч çава хурса тухмалла тет. Вĕсене хунă чухне: «Вĕреçĕлен пуçне касса татăр», — тесе каламалла.

Униççе кинемей патĕнче ку сăмахсене илтсен Ятак Петĕрĕн сасси те çĕтсе ларать. Вăл унран тата мĕн туса пăхмаллине ыйтать. Униççе кинемей тата мĕн тумаллине ăнлантарать.

— Эсĕ, Петĕр, пÿрте кĕр те трубаран пăх, вара çÿлелле хытă кăшкăр,— тет. — «Марине килте çук! Марине килте çук!» — тесе кăшкăрса тăр,— тет. — Урама тухса çур çĕр тĕлĕнче кăшкăрмалла тет. Вара Вĕреçĕлен Маринене урăх çĕрте шырать тет, сирĕн тĕлтен каять тет.

Петĕрĕн çавăн пек виçĕ кун кăшкăрса тăмалла тет. Униççе кинемей хушнă пек тăвас тесе Петĕр ун патĕнчен тухса кайрĕ тет. Ял çыннисенчен çавасем ыйтса илчĕ тет, мĕн тума кирлине шарламарĕ тет.

Виçĕ кун хушши кăшкăрнă тет пĕр тапранмасăр. Ялти çынсем Ятак Петĕрĕ ухмаха тухнă пулĕ тесе кĕре-кĕре кайнă тет хăйсен пÿрчĕсене. Çав виçĕ кун хушши Ятак Петĕрĕ ачисене пач та тула кăларман тет. Виççĕмĕш каçхине Петĕр кăшкăрнă вăхăтра пĕлĕтрен çăлтăр ÿкнĕ пек курăнса кайнă тет. Чăх куçĕ пек лампине çутать тет, тĕлĕнсех каять тет: арăмĕн çăварĕнчен юн тухнă тет те, ĕмĕрлĕхех куçне хупнă тет.

### 1018

Пĕр хĕрарăм пурăннă тет. Ун патне юратакан çынни çĕлен пулса кĕрсе çÿренĕ тет. Пĕррехинче çапла вĕсем Вĕриçĕленпе иккĕшĕ апата ларнă тет. Яшка çинĕ чух кашăкĕ ăнсăртран ÿкет. Кашăка илме сĕтел айне пĕшкĕнсен Вĕриçĕленĕн хÿрийĕ темĕн тăршшĕ тăсăлса выртнине курать. Вĕриçĕлен хĕрарăм унăн хÿрине курнине сисет те ăна вĕлерсе хăварать.

### 1019

Пĕр çамрăк арăмăн упăшки вилнĕ тет. Вара çак хĕрарăма Вĕриçĕлен ернĕ тет. Хĕрарăм хăй патне пĕччен çывăрма хăратăп тесе кÿршĕ хĕр ачине илсе каять. Каçпала хĕр ача вăранса каять те хăраса каять. Çак хĕрарăм алăка яри уçса пăрахнă тет. Хăй хушпу тăхăнса ташлать тет анчах. Ку хĕр ачи çывăрса выртнă пек туса выртать тет. Ташларĕ-ташларĕ тет те çак хĕрарăм тухса кайрĕ тет. Ир енне каялла килчĕ тет. Ир пулсан, çывăрса тăрсан хĕрарăм хĕр ачаран ыйтать тет: «Нимĕн те пулман-и мана?» Хĕр ачи: «Çук», — тесе калать тет.

### 1020

Пĕррехинче каç пулсан ĕне сума лартăм. Теплерен хыçалалла пăхса ятăм та, çÿлте крыша çинчен Вĕриçĕлен хĕп-хĕрлĕ хĕм кăларса пачалăх çине хăпарса кайрĕ.

Вăл унталла-кунталла пăхкаларĕ те тумне хывса пÿрте çын пек утса

кĕрсе кайрĕ. Пирĕн анне чирлĕччĕ те кашни кун хĕне кайса пычĕ. Хăвăртрах ĕне суса пĕтертĕм те пӳрте кĕтĕм.

Эпĕ ăна чĕнетĕп, вăл манпа мар, такампа калаçать. Такама хăй патне чĕнет, ырă канаш парать. Кайран анне нумай пурăнаймарĕ. Ваттисем каланă тăрăх, аннене Вĕриçĕлен пăвса вĕлернĕ иккен.

### 1021

Эпĕ çамрăк чох ял хоралне тохса Татьянпа пĕрле. Ларатпăр вĕсен тĕлĕнче. Пăхап: Çеçмер енчен çăлтăр пек çот япала косса анчĕ. Татьяна: «Тăхта-ха», — теп. Вăл ним те чĕнмес. Çав вăхăтра пер омран шоп-шор поçлă арçын отса иртрĕ пит васкаса. Çӳçĕ ласт-ласт силленет. Эпĕ Татьян чĕнет поль-ха тесе чĕнмерĕм. Карян ыйтап онран вăл мĕншĕн шăп тăнă пирки. Вăл: «Он пеккисене чĕнме йорамас, Вĕриçĕлен вăл», — терĕ. Çăлтăр пак полса анат тет, вара çын пак полат тет.

### 1022

Ĕлĕкех пĕр хĕрпе каччă питĕ тӳр пулса туслă пурăннă тет. Пурăнсан-пурăнсан каччи вилет тет. Хĕрĕ уншăн питĕ куляннă. Вăл вилсен яланах пĕр-пĕччен мĕскĕн сӳренĕ.

Пĕрре çапла ашшĕ-амăшĕсем сăра ĕçме кайнă çак хĕрĕн. Ку килте пĕчченех ларнă. Çĕрле пулсан алăка пĕри пырса шаккать.

«Кам унта?» — тет хĕр. «Тусăм, уç-ха», — тет алăк хыçĕнчи сасă. «Ман тусăм вилнĕ çав», — тет хĕр. Леш шаккасан-шаккасан чӳрече патне пырать. Пĕрмаях: «Тусăм, уç-ха», — тет. Ку хирĕç ăснаях: «Ман тусăм вилнĕ ça-a-ав», — тет. Чӳречерен шаккасан-шаккасан тĕнĕ патне пырать. Тĕнĕрен: «Тусăм, уç-ха», — тет те хăех тронк! сиксе кĕрет.

Хĕр тĕлĕнсех каять: чисти ĕлĕкхи тусех тет, ун çумне пырса ларчĕ тет. Çумне пырса ларать те тусне калать: «Тусăм, — тет, — мана çу-у-уллă тинкле юрса пар-ха», — тет. Хĕрĕ çиччас юрса парать. Иккĕшĕ хире-хирĕç лараççĕ те çиеççĕ. Çинĕ чухне арçын тусин тинкли пĕрре те ăша каяймасть тет. Мĕн çинĕ пекки веçех янах айĕнчен юхать тет. Хĕр куна курать те тусĕнчен ыйтать: «Тусăм, — тет, — сан янах ма шăтăк у?» Леш кашăкне пăрахать те: «Хăр-р-хам-хам-хам-хам-м-м», — тесе тосне коп! ярса илет. Вара иккĕшĕ те труках ыталашса вилсе каяççĕ тет.

### 1023

Пĕрре Селиван Ваççукĕ, Алькай, эпĕ пасара каятпăр. Ире хирĕç çапла. Патвурти Кăркăс Иван арăмĕ сывлăхсăра кайнăччĕ. Вăл вăхăтра вĕсем Тенкешек сăрчĕ çине Патвура куçса ларнă ĕнтĕ.

Хурăнвар патне çитеспе вара çулăн сулахай енче пĕр выльăх масарĕ пур. Çырма тăрринче ларать вăл масар.

Ытлаван* пыратпăр çапла. Патвуртан çĕкленчĕ те Вĕреçĕлен так пырать, так пырать саççим ярăнса**. Пуçĕ ем-ешĕл хăйĕн, сăпка пысăкăш. Пире май пырать аялтан кăна. Çурлă*** каçма пăхасшăн та: «Не смей, —

* Ытла аван.
** Вĕçсе.
*** Çул урлă.

тетĕп, — çул урлă каçма. Эпĕр иртмесĕр ан ирт!» — тетĕп. Иртмерĕ. Эпĕр иртсе кайсан хайхи выльăх масарĕ çине тăрăнса кăна анчĕ.

Хурăнвара пырса кĕтĕмĕр. Алькайăн сехри хăпнă. Урамри çынсене калатпăр та:

— Эй, унта ялан куратпăр эпĕр ăна — килсе кĕнине те, тухса кайнине те, — теççĕ.

Унта шыв шăтăкĕсем пулнă та, çавăнта пурăннă иккен вĕсем.

Кăркăс Иван арăмĕ вилчĕ вара. Вĕлерет вăл.

## 1024

Ĕлĕкрех вĕреçĕленсем пит нумай пулнă тет. Вĕсене çынсем куç кĕретех курнă тет. Вĕреçĕлен питĕ пысăкскер тет, пуçĕ сăра хуранĕ пек пысăк тет, кĕлетки çап-çутă тет, куçĕсем хуп-хура тет. Вăл йăмра тăрринче çаврăнса тăрать тет те пĕр-пĕр киле кĕрсе курăнми пулать тет. Вара нумай та вăхăт иртмест тет, кил хуçи чирлесе ӳкет тет. Чирлĕ çынни вара ир-ирех пура çине хăпарса тăмалла тет те пĕтĕм ял илтмелле: «Мана Вĕреçĕлен ернĕ! Намăс пултăр! Намăс пултăр!» — тесе кăшкăрмалла тет.

Хайхи Вĕреçĕлен намăсланса çак çынран хăпать тет.

## 1025

Ĕлĕк укçашăн таçта та кайнă. Вăтапуçне авăн çапма кайнă тет. Çавăнта пĕр хĕрарăм чирленĕ тет. Ăна Вĕриçĕлен иленнĕ те, вăл вилме патнех çитнĕ тет. Вĕриçĕлен пĕр каçхине çав хĕрарăм патне пӳрт кĕтессине йăтса кĕчĕ тет. Йăтса кĕнĕ вăхăтра хĕрарăм вилет. Кусем авăн çапса пĕтереççĕ те хуçаран укçа илсе киле килме тухаççĕ. Канашран çуран килнĕ. Çĕрле Лаппра патĕнчен Атнаш патне тӳртен килеççĕ. Хыçран пĕрмаях н-н-н!!! йынăшнă сасă илтĕнсе пырать тет. Кусем чĕнместпĕр тет, утатпăр тет. Пĕри каларĕ тет çăкăр татăкки пăрахса хăвармалла тесе. Çăкăр татăкки пăрахса хăвартăмăр тет. Утса пынăçемĕн çав сасă инçете-инçете юлса пырать тет. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пĕтсе пырать тет. Сурăм вăрманне çитиччен пачах пĕтсе ларчĕ тет.

## 1026

Пĕр хĕрарăм кĕпесем пӳрт пуçне çуса çакнă тет те типĕ кĕписене пуçтарса килелле килет тет. Терентти Çтаппанĕсем патне Вĕриçĕлен хӳ! туса анчĕ тет. Пĕтĕм çанталăка çутатса ячĕ тет. Терентти Çтаппан арăмĕн нумай нуша курмалла пулчĕ çав унăн. Упăшки те вăрçăран таврăнаймарĕ. Вĕриçĕлен кам нумай нуша курнă, çавна тапăнать тет тата — чирлекен çынсене те. Терентти Çтаппан арăмĕ чирлесе хĕне кайса вилчĕ çав вăл.

## 1027

Ĕлĕк тыр алама кайнă. Сурăмра анкарти пулнă. Хальхи пек вăйлă техника пулман. Сортировкăпа тыр алатпăр. Çĕн урамра пуслăх пек, туратлă Вĕриçĕлен анать.

Çав каçхине çав урамра пĕр çын вилнĕ. Халĕ киле кайма та хăратпăр. Çавăнтан каçпа тыр алама кайма пăрахрăмăр.

## 1028

Пĕрре çапла каçпа юнашар ялтан хурама патĕнчен килетĕп. Хурама патне çитейменчĕ ĕнтĕ. Пăхатăп та хурама йывăççи патне: Вĕреçĕлен вĕçсе пырать. Хурама патне çитрĕ те куçран çухалчĕ. Вĕçсе кайнă чух хыçалтан хĕм сирпĕнсе пырать. Çынсем вăл йывăç çине кĕпине çакса хăварать тенине илтнĕ эпĕ. Çавăнпа та кайса пăхас терĕм çавăнта, хурама патне. Хам хăратăп, пурпĕрех çавăнталлах утатăп.

Йывăç патне çитерехпе, чăнах та, йăлтăркка кĕпе çакăнса тăнине куртăм. Мĕн пуласси пултăр, ку кĕпене хампах илсе каям-ха терĕм те кĕсьене илсе чикрĕм.

Киле çитсен чиперех çывăрса кайнă. Тем вăхăт çывăрнă, ăна пĕлместĕп, темле шарт! сиксе вăранса кайрăм. Пăхатăп та: хам çинче утиял çук. Тепĕр хут пуç çинчен витĕнтĕм те çывăрса кайнă. Часах тĕлĕк курма тытăнтăм.

Тĕлĕкре Вĕреçĕлен манран кĕпине ыйтать пек. Хăй макăрать пек. Тĕлĕкре Вĕреçĕлене кĕпине каялла парса ятăм пек. Кун хыççăн ун пек япаласене урăх тытмастăп тесе хама сăмах патăм.

## 1029

Ĕлĕк пĕр карчăкăн ывăлĕ вăрçăра пулнă. Унăн ывăлĕн вилнĕ хут килет. Ват карчăк питĕ хытă куляннă. Вăл килĕнче кашни каç макăрнă. Пĕрре çак макăрса выртнă чух çав карчăк çумне йăпăр-япăр пĕр этем кĕрсе выртрĕ тет. Хăй пăр пек сивĕ тет. Карчăк сиксе тăрса лампă çутсан кравать айне кĕрсе кайрĕ тет. Çакăн хыççăн карчăк хăраса килĕнче выртма пăрахать.

## 1030

Ĕлĕк пĕр хĕрпе каччă туслă пулнă. Пурăнсан-пурăнсан çак хĕре каччи пăрахать. Хĕр веç хуйха ўкет, урама та каçсерен тухма пăрахать. Хăй типнĕçем типсе пырать. Нумаях та вăхăт иртмест, çак хĕре Вĕреçĕлен ерни çинчен пĕлеççĕ. Пĕррехинче ялти çамрăксем хăйсем хушшинче çав Вĕреçĕлене сыхласа тытма шутлаççĕ. Ушкăнĕпе пуçтарăнаççĕ те çак хĕр пурăнакан пўрт панче сыхласа тăраççĕ. Акă Вĕреçĕлен вут-хĕм сирпĕтсе анчĕ тет. Тумтирне хывса ампар айне пытарчĕ тет те каччă пулса хĕр патне кĕрсе кайрĕ тет. Пухăннă çамрăксем çав Вĕреçĕленĕн тумтирне илеççĕ те пытараççĕ. Çур çĕр иртсен Вĕреçĕлен тухрĕ тет, пăхать — тумтир çук. Кăна çынсем ярса тытаççĕ. Вĕреçĕлен тархаслать: «Тархасшăн, тумтирсене парăр», — тет. Вара çынсем ыйтаççĕ вĕреçĕленсем ăçтан пулаççĕ тесе. Вара Вĕреçĕлен каласа пачĕ тет: «Эпир çуралман чунсем (хырăм пăрахнисем), — тет, — эпир çĕр çинче пурăнма пултараймастпăр, — тет. — Парăр тумтире, унсăрăн эп автан авăтса ярсанах саланса каятăп, — тет. — Эпĕ ку хĕр патне урăх килместĕп», — тет. Хĕр патне урăх пымарĕ тет.

## 1031

Вĕреçĕлен вăл вут пек çуталса вĕçсе килет тет те анса ларать тет. Аннă хыççăн кĕпине хывать те пĕр тĕм хыçне пытарса хурать. Кĕпине хывнă хыççăн хăй çав тери хитре, ытармалла мар каччă пулса тăрать. Вара каять вăл

пĕр яла хĕр патне. Яла çитет, хĕрне курать, калаçать, кулать те таврăнать. Вара Вĕреçĕлен тĕм хыçĕнчен кĕпине илсе тăхăнать те вĕçсе каять.

Каçхине вăл çур çĕр çитиччен çўрет. Çур çĕр иртсен вара вăл курми пулать. Çавăнпа та вун икĕ сехет çитиччен кĕпине тăхăнать те каялла вĕçсе каять.

Пĕрре çапла Вĕреçĕлен вĕçсе килчĕ те анса ларчĕ. Кĕпине хывса хунă хыççăн тасалчĕ те ытармалла мар хитре каччă пулса тăчĕ. Вара пĕр яла хĕр патне кайрĕ.

Эпир çакна йывăç хыçĕнчен курса тăнă хыççăн пĕри пирĕнтен тухрĕ те кĕпине илсе урăх вырăна чĕркесе хучĕ. Эпир вара сыхласа тăтăмăр. Япалине çын тытса урăх çĕре куçарса хурсан тупаймасть иккен вăл. Халь килет Вĕреçĕлен. Кĕпине хывса хăварнă çĕре пăхать — кĕпи çук. Тытăнать шырама. Шырать-шырать — тупаймасть. «Çакăнта кăна хутăм вĕт, ăçта кайнă-ха?» — тет. Хай старик тухать кун патне. «Мĕн шыран ара, ывăлăм, мĕн çухатрăн?» — тесе ыйтать. «Кĕпене çухатрăм-ха. Хура тумтирпе каяс мар тесе яла кайнă чух хывса çак тĕле кăна хурса хăварнăччĕ те вĕт. Ăçта кайса кĕчĕ-ши?» — тет. «Авă кĕпў, эпĕ илсе хутăм ăна», — тесе старик кĕпине илсе парать.

Вара Вĕреçĕлен кĕпине тăхăнчĕ те мĕнле килнĕ, çавăн пекех çухатса вĕçсе кайрĕ.

## 1032

Мана аппа хăйне Вĕриçĕлен ерни çинчен каласа пачĕ. Вара эпир тантăшсемпе пĕр каçхине Вĕриçĕлен килессе кĕтсе лартăмăр. Çур çĕр çитессипе йăлтăр-ялтăр çутă япала аппан тăрпинчен кĕрсе кайрĕ. Кăмака тăрринче хывăнчĕ те аппа патне арçын пулса анчĕ. Эпĕ кăмака тăрне йăпăр-япăр хăпарса кайрăм та йăлтăр-ялтăр çут тумне пытарса хутăм, хам кăмака тăрринчех юлтăм. Вĕриçĕлен пĕр-ик сехет иртсен кăмака тăрне хăпарчĕ те хăйĕн тумне ыйта пуçларĕ, йĕре-йĕре ыйтать, аппа патне урăх нихçан та килместĕп тет. Эпĕ вара ăна йăлтăр-ялтăр тумне патăм та, вăл ăна тăхăнса питĕ хăвăрт куçран çухалчĕ. Çавăн хыççăн вара Вĕриçĕлен аппа патне килме пăрахрĕ.

## 1033

Часах хĕрсем качча каятчен ачасем туса çав ачасене, намăс курасран, вĕлерсе кайса пăрахаççĕ. Çав ачасем кайран пысăкланса Вĕриçĕлен пулаççĕ тет, арçын ачаран пулнă пулсан амăшнех çыпçăнаççĕ тет, хĕр ачаран пулнă пулсан амăшин упăшкине çыпçăнать тет. Вĕриçĕлен вăл хăй çынах тет, анчах вара темле кăвар тĕслĕ çут тумтире тăхăнать тет. Хăй çыпçăннă çынĕ патне кĕнĕ чух вара çав çут тумтирне хывса хурать тет те йăпăрт анчах кĕрсе каять тет. Пĕрре çав Вĕриçĕлен пĕр çын патне вĕреннĕ тет те кашни каç пырать тет. Çынĕ пĕтĕм начарланса, типсе хăрса кайрĕ тет. Çав çыннăн кўршисем иккĕн, пит маттурскерсем, пĕрре çавăскерне сыхласа тăчĕç тет. Нумай та пулмарĕ тет, çав Вĕриçĕлен, ваçка, таçтан çўлтен йăлтăртаттарса, кашласа анчĕ тет. Хăйĕн çут тумтирне хывса тем юпи çине çакрĕ тет те хăй çав çын килне йĕрт! анчах кĕрсе кайрĕ тет. Çак икĕ маттур çавăн тумтирне хăйсем тăнă çĕре илсе çакрĕç тет. Унччен те пулмарĕ тет, Вĕриçĕлен вĕçтерсе тухрĕ тет те ку хăй тумтирне шырама тапратрĕ тет. Шырасан-шырасан икĕ çынна курах кайрĕ тет те тархаслама тапратрĕ тет кĕсене. Лешсем тархаслаттарсан-тархаслаттарсан тин куна пачĕç тет те текех килнĕ пултăр тулĕк сана тесе каларĕç тет. Лешĕ: «Текех çĕр çухрăмран витрех тарап ĕнтĕ кунтан», — тесе тĕрт! анчах çухалчĕ тет.

* * *

Тепре, çавăн пек хĕр качча кайнă чух, кĕрекере хӳхленчĕк айĕнче Вĕреçĕлен ларать тет, ыттисен куçне курăнмасть тет, çав хĕрĕн куç умне курăнать тет. Хĕр пĕрре шуралнă, тепре хĕрелнĕ тет. Леш ачи пурин куçне те курăнса çав хĕре: «Эпĕ саншăн пайтах хурлăх куртăм!» — тесе чат! тутарса ячĕ тет те çавăнтах çухалчĕ тет. Хĕрĕ сĕтел айне тӳп! анчах турĕ тет.

## 1034

Пĕррехинче, мăнкун ыран тенĕ чухне, çамрăксем урамра çӳлтен йăлтăртаттарса аннине курнă. Вара вăл ансассăн хăйĕн йăлтăртатса тăракан костюмне хуса хунă. Кайран çын тăхăнса çӳрекен костюма тăхăннă. Костюм тăхăннă хыççăн пĕр хĕрарăм патне старикки пулса кĕнĕ. Унăн старикки вилнĕ пулнă. Çакна çамрăксем курнă. Вĕсем çав хывса пăрахнă костюмне илсе пытарнă. Вара хайхи ку 12 сехетре тухсассăн хăйĕн костюмне макăра-макăра шыранă. «Мана хамăн костюма парăр, эпĕ урăх килместĕп», — тенĕ вăл.

Вара ăна ачасем хăйĕн костюмне панă тет. Вăл çӳлелле йăлтăртатса вĕçсе кайнă. Унтан вара урăх килмен.

## 1035

Ĕлĕк пĕр килте пĕр хĕр чирленĕ пать. Онăн каччисем полнă. Вĕсем çак хĕр патне Осал килет поль тесе шотланă. Çак виçĕ каччă çавăнпа та сыхлама шотлаççĕ.

Хайхисем анкартипе итем çине тохаç те сыхласа лараççĕ. Эх, хайхискер йăлтăртатса килет тет пĕр япала. Анкартинчи итем йопи котне анать те, выртса йăванать те çаксер каччă полса тăрать. Вара хайхискер хĕр килне кĕрсе каять. Хайхи виç каччă итем йопи патне пырса шыраççĕ: «Мĕн пор-ши?» — тесе, анчах ним те çоккă иккен. Пĕртен-пĕр лаша пăх катăкки çеç выртать пать. Çавна каччăсем илеççĕ те татах пытанса лараççĕ пать. Хайхи каччă хĕр патĕнчен тохрĕ пать те итем йопи патне пычĕ пать. Шырать пать, анчах çоккă. Халь каччă макрать тет. Виçĕ каччă тохаç те çакăн патне пыраççĕ.

— Пошалстă, ман томтира парăр, — тесе йăлăнать пать.

— Эс çак хĕр патне ма килен? — тесе ыйтаççĕ пать çакăнтан.

— Мана ăна илсе кайма хушнă, çавăнпа килеп, — тет.

Виçĕ каччă çакна: «Эсĕ татах килен полсан сана томтир памастпăр», — тесе хăратаççĕ тет. Ку: «Урăх килместĕп», — тесе ĕнентерчĕ пать. Вара кăна томтир пачĕç тет. Вăл выртса йăванчĕ тет те Вĕриçĕлен полса вĕçсе кайрĕ пать. Хĕр конран-кон сывалса пычĕ пать.

## 1036

Пĕр çыннăн хĕрĕ вăрăм чирпе выртать тет. Ун çинчен пурте Вĕриçĕлен ернĕ тесе калаçнă тет. Çавă чирпе выртакан хĕртен вăрттăн:

— Арçынпа çапăçмастăн-и? — тесе ыйтаççĕ тет.

Чирлĕ хĕр ыйтакансене çапла каласа пачĕ тет:

— Эпĕ тĕлĕкре ялан çав çын ачипе, Иванпа, çапăçатăп, вăл Иван

ман пата кашни каçах килет, тата ман хамăн та Ивана курмасан ăш пĕрре те выртмасть, — тесе каласа пачĕ тет.

Кил хуçисем вара Вĕриçĕлене сыхлама тытăнчĕç тет. Каç пулсан, кусем сыхланă вăхăтра, чирпе выртакан хĕр патне Иван чăнахах анкартинчен килчĕ тет. Иванпа хĕр темскер чиперех калаçма тытăнчĕç тет. Ку каç пулчĕ, нимĕн те тăваймарĕç тет. Тепĕр каçхине анкартинче сыхлаççĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет, Вĕриçĕлен йăлкăшса та анчĕ тет. Ку ахаль вырăна анмарĕ, тӳрех хăмла вырăнне анчĕ тет те Иван каччă пулса выртакан хĕр патне кĕрсе кайрĕ тет. Хайхи сыхлакансем хăмла вырăнне кайрĕç тет те Вĕриçĕленĕн тумтирне шырама пуçларĕç тет, хайхи тумтире тупрĕç тет. Сыхлакансем ку хĕр мĕнле выртать-ши тесе выртнă вырăнĕ çывăхнерех пычĕç тет. Хайхи чирпе выртакан хĕр нимĕн каламалли çук йынăшса ахлатса выртать тет.

Автан авăтсан, çур çĕр иртсен, Иван хайхи хĕр патĕнчен кайма тытăнчĕ тет, анкартине, хăмла вырăнне, тумтирне тăхăнма пычĕ тет. Хайхи тумтирĕ хăй хывса хăварнă вырăнта çук тет. Сыхлакансем ку мĕн хăтланатьха тесе катаран пăхса тăраççĕ тет. Хайхи Вĕриçĕлен йĕре-йĕре тумтире шырать тет, хайхи çын пулса çакă сыхлакансем патне пычĕ тет те:

— Тумтире парăр! — тесе тархаслама пуçларĕ тет.

Сыхлаканĕсем ăна хирĕç:

— Эсĕ кунта ма килтĕн? — тесе чупса пырса тытрĕç тет, вилеслех хĕнеме пуçларĕç тет.

Лешĕ çаплах:

— Тумтирĕме парăр, эпĕ кунта урăх килес çук. Эпĕ кунтан пăрахса каятăп, — тет.

Хайхисем вара хĕнесен-хĕнесен тумтирне пачĕç тет те, Вĕриçĕлен кайрĕ тет. Хайхи выртакан хĕр сывалса тăчĕ тет.

## 1037

Манăн çак Энтĕриелĕнче пĕр пуйккă тăхлачă пурччĕ. Шакарай Ваçук арăмĕ тетчĕç ăна. Тăхлачăн Энтюк ятлă ывăлĕ пĕрре вăрçăран курма таврăнать. Арăмĕ Чакак ятлăччĕ вара, кин пулать ĕнтĕ вăл. Кинĕн тата Марье ятлă хĕрĕ те пурччĕ.

Энтюк кĕрӳ килте пулса кайнă хыççăн пирĕн Чакак кин темле аптраса çӳрекен пулать.

Пĕрре çапла тăхлачăпа тĕл пулатпăр та, тăхлачă:

— Ман кине тем пулчĕ, хăта, текех аташать вăл, пырса куран пуль, — тет.

Ăна упăшки кайнă хыççăн Вĕреçĕлен ернĕ пулнă иккен. Тимĕрçĕ Савалейĕнчен илнĕ тапкăчăллă кĕске пăшалăм пурччĕ. Çавна чикрĕм те кайрăм хай тăхлачă патне. Кĕпçи ăшне пĕр тĕпренчĕк çăкăр ятăм. Атту усал çине пăшал каймасть. Мĕн пулĕ тетĕп. Каçхине тăхлачă кăмака çине выртрĕ, кин тĕпеле, эпĕ кутник сакки çине выртрăм. Çывăрмастăп вĕт. Çывăрсан янклаттарса хăварать вăл. Выртатăп хайхи. Нумай выртап-и, сахал-и — ман Чакак кин ерипен тăчĕ те... тухать. Тухрĕ те хайхи, мăкăр-мăкăр калаçса тăраççĕ. Эпĕ пăшалăма тĕллесе тытрăм та хуллен кăна алăк патнелле шуса пытăм. Итлетĕп ĕнтĕ. Кин: «Хăтасем килнĕ», — тесе каласа парать Усала, ман çинчен калать иккен, аскăн.

Алăка уçрăм та:

— Кин, кампа калаçатăн, час кĕр, — терĕм.

Кин мана хирĕç чĕнмесĕр-тумасăрах кĕрсе выртрĕ. Эпĕ каллех сыхласа выртатăп. Татах тухрĕ хайхи, татах мăкăртатма тытăнчĕç. Каллех çавăн пек шуйлантарса кĕртрĕм ăна. Кĕрет те нимĕн чĕнми выртать. Ман кин васка пуçларĕ вĕт хайхи, виççĕмĕш хут татах кăштăртатса тухрĕ. Кĕпине йӳле янă хăй, пуçĕнче тутăрĕ çук. Каллех мăкăртатаççĕ. Тем калаçаççĕ ĕнтĕ, такам пĕлет Усалăнне. Ерипен кăна алăк патне пырса яр-р! уçрăм та алăка тăрс! тутартăм. Шари! кăшкăрса ячĕ кин.

— Час кĕр, кампа калаçатăн? — терĕм.

— Энтюкпа, — тет кин.

— Мĕн аннӳ пуçĕ Энтюкĕ, — тетĕп.

Хăпăл-хапăл тăхлача вăратрăм та веçех каласа патăм. Кине кутăн çăпата сыртарса кӳршĕсем патне леçсе яма хушрăм. Çапла туса кине Лявук хăта патне леçсе хăвартăмăр. Тепĕр каçхине леш Вĕреçĕленĕ йĕрне шыраса çӳрет тет.

— Çакăнталлах кайнă-çке! — тесе калать тет. Йĕрĕ кутăн пулнипе çухатнă иккен. Лявук чӳречи витĕр пырса: «Чакак çук-и кунта?» — тесе ыйтнă.

Лявук хулăн сасăллăччĕ вăл, хытă кăшкăрса пăрахсан пăрăнса кайрĕ тет вара Усалĕ.

Тепĕр каçхине кине тупса пĕтĕм çӳç-пуçне тăлпаса пĕтернĕ.

— Папуй* çирĕм, — тесех вилчĕ тет.

## 1038

Ката Кирук арăмĕ упăшки вăрçа тухса кайнă хыççăн ачисемпе тăлăха тăрса юлнă. Çавна пула вайлă хуйхăрма пуçланă, вара ăна Вĕреçĕлен ернĕ. Вĕреçĕлен ерсен çын начарланать, çынран ютшăнать, çынпа калаçасшăн пулмасть. Вĕреçĕлен çынна ыр апатсем çиме хушмасть тет, ăна пĕлсен хытă хĕнет тет, лаша тислĕкĕ çитерет тет. Çав лаша тислĕкне çын минтер айĕнче усрать тет, илес тесен йĕрет тет, ун пек чухне лешĕ хĕнесрен хăрать тет вăл.

Кирук арăмне Вĕреçĕлен ерсен начарланнăçемĕн начарланнă. Пĕррехинче ăна çăпата кутăнла сыртарса Ашхитка кӳрши патне илсе каçса выртттарнă тет. Кирук арăмĕ сиксе тăрса тула тухса каять тет, хăй яланах:

— Эх, Кирукăм, Кирукăм! — тесе йĕрет, чарăнма пĕлмесĕр ахăрать тет.

Вĕреçĕленĕ ун пӳрчĕ тавра:

— Киле килнĕ, килĕнчех ĕнтĕ, — тесе тем пекех кĕтет те, анчах вăл кĕтни çинчен никам та сас тумасть тет.

Тепĕр кунне Кирук арăмне Вĕреçĕлен çав тери вайлă хĕнесе пĕтернĕ тет. Вайлă хĕненине кура пичĕ-куçĕ, çан-çурăмĕ кăн-кăвак кăвакарса кайнă тет. Вĕреçĕлен хăй çинчен калаçакансене кураймасть тет. Ну пусмăрларĕ те пусмăрларĕ вара Кирук арăмне: мĕн виличченех асаплантарчĕ тет вара. Вилнĕ хыççăн тупăка выртттарса алăксемпе чӳречисем çине хĕрессем хывсан çĕрле пӳрте кĕрсе тупăк йĕри-тавра вут-хĕм сапрĕ тет те пĕтĕм пӳрт кисренмелле вăйлă çапса хăварчĕ тет. Юлашки вăхăтра илтĕнмеççĕ-ха тата.

* Побои — хĕнени.

## 1039

Пирĕн чăвашсем авалтанпах Вĕреçĕлен пур теççĕ. Вĕреçĕленĕн пуçĕ çын пек, хӳри унăн çĕлен хӳри пек тет. Çӳрессе вăл вĕçсе çӳрет тет. Вăл вĕçсе пынă чух çĕрле çап-çутă пулать, хăйĕнчен вут çулăмĕ пек хĕлхем тăкăнса пырать тет. Вĕреçĕлен вăл кăнтăрла çӳремест, каçхине анчах çӳрет. Кăнтăрла вăл çĕр айне кĕрсе пытарăнса выртать.

Пĕрре эп çулла тĕттĕм каç тула тухрăм. Çӳлтен, хамăр çурт тĕлĕнчен, Вĕреçĕлен вĕçсе пынине куртăм. Вăл çав тĕрлĕ хăрушă пырать. Хăйĕнчен пĕтĕм вут çулăмĕ пек япала тăкăнса пырать. Çапла вăл хăй ăçта каяс тенĕ çĕре вĕçсе каять, ăçта чарăнмалли çĕре чарăнать те çĕре анать тет.

Çав Вĕреçĕлен тата çынна ерет: вăл час-часах качча кайман хĕрсене ерет. Çав хĕре вара асаплантарса начарлатать те, вара çав çын вилет теççĕ. Çав Вĕреçĕлен ерсен ăна ниепле те сивĕтме çук теççĕ. Çав хăй ернĕ çыннине хăй ун патне çӳренине никама та калама хушмасть тет. Каласан вăл çавăнтах вĕлерет. Ерессе вăл пĕччен пурăнакан хĕре ерет теççĕ.

Çав Вĕреçĕлен пур ялта та пулмасть, хăш яла вĕреннĕ вăл малтан, çав ялта анчах пурăнать теççĕ. Вĕреçĕлен вутлă кĕлрен пит хăрать, вăл вĕçсе пынă чух вутлă кĕлпе сапсан çавăнтах çӳлтен çĕре персе анать тет.

Пирĕн ялта пĕр çитĕннĕ хĕр пĕчченех пĕр пӳртре пурăнатчĕ. Çав хĕр мана хăй патне Вĕреçĕлен епле çӳрени çинчен каласа кăтартрĕ.

— Малтан эпĕ нимĕн те пĕлмерĕм, хам юратнă çын пек туйăнчĕ мана вăл, пыра киле Усал пулса тăчĕ вăл. Халĕ ĕнтĕ ним туса та сивĕтме çук, çĕрле пӳрт алăкĕ патĕнче макăрса тăрать, кӳртмесен нимпе те каймасть. Хама лутăркаса чирлеттерсе пĕтерчĕ ĕнтĕ, — терĕ. — Нимĕн туса та сивĕтме çук, — терĕ.

## 1040

Пĕр хусах арăм тек хĕн курса пурăннă. Хăй сисмеллех начарланса, типсе пынă. Ăна Вĕриçĕлен тапăннă иккен. Кашни каçах ун патне Вĕриçĕлен вĕçсе пынă. Вăл ун патне çамрăк каччă пулса пынă тет. Вара вăл çапла тунă тет. Каçхине çывăрма выртиччен алăк айне пилеш йывăççи пăрахрĕ тет, кĕл сапрĕ тет. Кайран пӳртелле — хăрах урине, тулалла — хăрах урине тăратса вĕри шыв сапрĕ тет. Çакăн хыççăн Вĕриçĕлен килме пăрахрĕ тет.

## 1041

Вĕриçĕлен хĕрсем патне тус каччи, хĕрарăмсем патне еркĕн пулса пырать тет. Вĕçсе анать тет вăл, тумтирне йывăç çине хывса хăварать тет. Чипер çын пулса хĕр е хĕрарăм патне пырать тет. Çак Вĕриçĕлен хĕр савнийĕ сăнлă та пулса пырать тет, кĕлетки, хул-çурăмĕ — пĕтĕмпе çавăн пек тет. Эп пĕлмес-ха ăна, Вĕриçĕлен акă мĕнтен пулса кайнă теççĕ: хăшĕсем ача пăрахаççĕ, çавăн пек ачасене çĕр йышăнмасть, çавăнпа вĕсем çĕлен пулса тăраççĕ. Вĕсем çынсене хăратса, ăс-пуçне пăтратса, çынна хавшатса, улталаса çӳреççĕ. Çакă пăрахнă ачасем çынсем пекех çитĕнсе пыраççĕ, каччăсем, хĕрсем пулаççĕ. Çитĕнсе çитсен вĕсем хĕрарăмсене, хĕрсене, каччăсене, арçынсене улăштарса яраççĕ, тĕрĕс çултан пăрса яраççĕ. Вăл, Вĕриçĕлен, канфет, пĕремĕк тесе ĕне е выльăхсен пăхĕпе хăналать тет, çакна пула çынсем хавшаса, нишлĕленсе çитеççĕ, хĕне кайса

вилеççĕ. Упăшка е савни çинчен нумай шухăшлама юрамасть. Вĕриçĕлен шутланине сисет те ун патне пыма пуçлать тет. Пырас умĕн малтанхи каç тĕлĕкре курăнать тет. Çапла хамăр ял хĕрарăмĕ ĕнтĕ, Иван Иванович матки, вăрçă вăхăтĕнче упăшкине кĕтсе питĕ-питĕ нумай шухăшлать. Çакна Вĕриçĕлен сисет те Иван Иванович матки патне Иван пулса пыма пуçăнать. Кайран çак кашни каçах пыма пуçлать. Юлашкинчен çак Иван матки упăшкине кĕтсе мунчана тухса ларма тытăнать. Кайран Вĕриçĕлен Иван пулса кăнтăрла та пырать. Пĕррехинче çак Вĕриçĕлен ăна вĕри мунча хутма хушать. Мунчи пулсассăн «Иван» калать: «Айта мунчана кайса кĕрер». Тухса каяççĕ кусем иккĕшĕ те мунча кĕме. Хывăннă чухне хĕрарăм Вĕриçĕлен хӳрине асăрхаса хăвăртрах, леш ăнланса иличчен, мунчаран вирхĕнсе тухса тарать. Леш кайран калать тет: «Çавăн чухне эс мунчана пынă пулсанах та-ха вĕри чул çине хурса вĕлереттĕм». Ку пустуй сăмах, çапах та ялти çынсем калаçаççĕ: «Вут хумасан тĕтĕм тухмасть», — теççĕ. Çакăн хыççăн Вĕриçĕлен пыма пăрахать тет.

Пĕри тата: «Табак туртса ларап та, ман пата кĕме хăрать Вĕриçĕлен», — тесе каласа кăтартать.

Халь вĕриçĕленсем çук, вĕсем çын ăшне кĕнĕ. Пĕрре хам та куртăм ăна. Яр-р! анать. «Каях хăв çулупа», — тесе çухăртăм та хăвăртрах киле кайрăм.

## 1042

Вĕриçĕлен вăл усал ернĕ çын. Çумкка Шанкал лаппинчен лашапа вутă тиесе килнĕ пулнă. Хăй пĕчченех пулнă. Килнелле килнĕ чухне лаши урапи вĕçне такам пырса ларнă тет. Вара хăй çулăм çутса тем туса пынă тет. Ку Çумкка çаврăнса пăхать те темле çын сăнне курать. Вара вăл тӳрех: «Манăн çумра пуртă, кĕсьере йĕс пăта пур. Анса каймасан сана эпĕ йывăç çумне çапса хуратăп», — тенĕ. Вара леш çынни чашлатса пăрахса кайнă.

## 1043

Вĕриçĕлен пĕччен çынсене ерет тет. Ку салтак арăмне ернĕ. Вăл килне арăмĕ патне таврăнать, анчах питне кăтартмасть. Кăмака тăрне улăхса ларать. Апат çиме чĕнсен те анмасть тет. Çам пек пĕрмай пырса çӳренĕ тет таркăн салтак килне. Кӳршĕсем хĕмленсе çулăмланса аннине кураççĕ тет. Арăмне каласа параççĕ тет. Анчах ку ĕненмеç: «Мĕн лăпăртатса тăратăр, мĕн Вĕриçĕленĕ антăр», — тесе калать тет. Кӳршисем калаç тет: «Эсĕ вилме пултаран», — тесе. Вара арăм çĕр те пĕр курăк пуçтарса утă туса пĕтĕм кил картине, пӳртне, пӳрт умне сарса тухать тет. Вĕриçĕлен çĕр те пĕр тĕрлĕ курăкран хăрать тет. Çапла вилĕмрен хăтăлчĕ тет арăм. Вĕриçĕлен тимĕртен те хăрать. Яла Вĕриçĕлен ерсен ял таврa тимĕр илсе чĕрсе тухмалла тет. Вара Вĕриçĕлен тарать.

## 1044

Хамăр ялта пĕр хĕрарăмăн упăшки вăрçăра вилнĕ. Ăна Анна аппа теткĕç. Вăл упăшкине нумай кĕтсе пурăннă, вара ăна Вĕри çĕлен ернĕ. Çĕрле пулсан аташма пуçлать хăйĕн упăшки каçпала килет тесе. Упăшкине ура-

ма хирĕç кĕтсе илме тухать. Вăл, Вĕриçĕленĕ, кăнтăрла мар, ялан каçпа килнĕ. Хăй каласа панă тăрăх, каç пулсан, халăхсем çывăрса пĕтсен, мачча тăрринчен хуп-хура костюм тăхăннă çын упăшка пекех пулса анать. Алăка шаккать, мана уçма хушать. Эп хам упăшка маррине пĕлсе тăрсах алăка уçма тухап. Вара вăл кĕрет. Мана мăйăрсем çитерет. Тухса кайнă чухне хăй килнине никама та калама хушмасть. Кĕрессе хăй мачча тăрринчен те, сакай алăккинчен те кĕрет. Çынна каласа парсан питĕ вăйлă хĕнет. Хăй питĕ тасалăха юрататъ. Урай хура пулсан килместĕп тет.

Вара вăл тепĕр çынна çывăрма илсе кĕнĕ, унтан шăпах та çывăрнă чухне мачча тăрринчен кăштăртатса аннине илтнĕ. Алăка шаккать, арçын сассипех калаçать тет. Ăна хирĕç чăнах та алăк уçма тухать тет çав хĕрарăм. Вара иккĕш тем çинчен калаçаççĕ. Халĕ çынсем умĕнче калама та намăс. Хăйсем мĕн каланине те пĕлмесĕр калаçаççĕ. Арçын ыйтать çав хĕрарăмран: «Сан кăмака хыçĕнче такам пур штоль кунта пире сыхлаканни?» Ман чун ура вĕçнех çитрĕ çакна илтсен. Енчен те вăл каласан мана пĕтереççĕ кусем. Тухса тарас — хăрап. Сывлама та хăрап. Темĕнле каламарĕ эпĕ кунтине. Унтан каллех ман çинчен манса кайса хăйсем пирки калаçма пуçларĕç. Мăйăр шĕкĕлчеççĕ. Кулаççĕ, калаçаççĕ. Тем вăхăт çитрĕ, калама пултараймастăп, арçын сасси калать: «Ну, манăн кайма вăхăт çитрĕ. Ыранччен!» Хĕрарăмми ўкĕтлет: «Тархасшăн, ан кай, тархасшăн, ан кай!» Манăн каллех тухса тарас шанчăк пĕтрĕ, каллех хăрама ертĕм. Анчах арçынни хăйĕннех калать: «Кайма вăхăт çитрĕ», — тет. Мĕнле кăштăртатса аннă, çавăн пек кăштăртатса ухса карĕ тет мачча тăррине. Унтан тем вăхăтран кантăкран çулăм йăлтăртатни курăнчĕ. Лайăх тинкерсе пăхрăм та асанне каланине аса илтĕм. Чăнах та çĕлен евĕрлех. Хўри тем вăрăмăш. Таçтан аякран çулăм сирпĕнсе пырать. Ўт тăрăх пĕтĕм сив шатри кайрĕ. Кăвак çутă килсен ирхине тăтăм та тухса тартăм. Кăнтăрла хăйне куртăм. Кăвакарса кайнă. Мана калать: «Эсĕ ма кайнă? — тесе. — Упăшка каçхине мана мăйăр пачĕ, — тет. — Атя кăтартап», — тесе калать. Илсе кĕрсе кăтартать — сурăх пăхĕ. Çав хĕрарăм калать: «Питĕ ывăнтăм çав çын килнипе, мĕн тăвас-ши? Мана пĕрмаях çавăн пек улталаса хăварать», — тет.

Çав хĕрарăм кайран çакăнса вилнĕ. Вăл пурăннă кил выранĕнче халĕ те çынсем пурăнасшăн мар. Халĕ те çынсем çавăн çинчен шикленсе калаçаççĕ. Усал вырăн пулнă тесе калаççĕ.

Çав Вĕриçĕлене сивĕтме пулать тет. Вăл килнĕ чухне алăк урати çине лармалла тет те кантăр вăрри çисе лармалла тет. Çынни: «Мĕн çиен?» — тесе ыйтсан: «Пыйтă çиеп», — тесе каламалла тет. Кашни килмессерен çавăн пек тумалла тет. Вара çавăнтан сивĕнет тет.

## 1045

Пирĕн ялта ĕлĕк пĕр-пĕччен хĕрарăм пурăннă тет. Унăн виçĕ çул хушшинче 5 ывăлĕ, çитĕнсе çитнĕскерсем, умлă-хыçлă вилсе выртнă. Унтан кĕçех упăшки те вилнĕ тет. Пĕр ачасăр, упăшкасăр тăрса юлнă хĕрарăм кунĕн-çĕрĕн макăрнă. Никампа та калаçман, никам патне те тухса çўремен. Пĕррехинче çамрăксем вăйăран таврăннă. Çаксен умне çитес чух пĕлĕтрех хĕп-хĕрлĕ ялкăшса темскерле çĕлен пек япала çĕрелле анма тытăннă. Ку çамрăксем хăвăртрах çак хĕрарăм кил хушшине тарса кĕнĕ.

Тепĕртакран çĕлен пек япала çак хĕрарăмсен пӳрчĕ патне аннă, çак хĕрарăмăн упăшки манерлех пулса тăнă. Унтан вăл хăй хывса пăрахнă тумтирне пытарса хунă та алăка пырса шакканă: «Упăшку килчĕ, Марье, уç», — тенĕ. Часах ăна уçса кĕртнĕ. Çамрăксем чӳречерен сыхлама пуçланă. Çак арçын кĕрсе тăнă та пӳрте сĕтел çине тĕрлĕ ăпăр-тапăр кăларса хума пуçланă (чăх пăх, сурăх пăхĕ т.ыт.те). «Çи, çи, сана валли кучченеç илсе килтĕм», — тесе калать тет хăй. Пĕрле апатланнă хыççăн кусем шăппăн калаçма пуçланă. Нимĕн те курăнман, нимĕн те илтĕнмен урăх. Унтан кĕçех автан авăтса янă, пӳрт тăрринчен хĕп-хĕрлĕскер çĕкленнĕ те пĕлĕтелле кайса çухалнă. Çав Вĕриçĕлен пулнă тет.

Унтан тата тепрехинче пирĕн асаттене, пĕчĕкрех чухне (пĕр 10—12-сенче пулнă тет), çак хĕрарăм хăй патне çывăрма илсе кайнă тет. Пирĕн асатте кайрăм тет. Çитрĕм тет те апат çикелесен мĕн тусан ура вĕçне çывăрма кĕрсе выртрăм тет. Ку çывăрса кайнă. Такамсем пăшăлтатнипе вăранса кайрăм тет. Тытса пăхать те хайхи, ура вĕçĕнче хĕрарăм анчах выртать тет. Анчах та арçын сасси те пур тет. Хĕрарăмĕ кулать тет, лешĕ (арçынни) темскер каласа парать тет, уйăрса илме çук тет. Тем чул тинкерсен те ниçта та арçын çук, анчах сасси пур тет. Çав тери хăраса кайрăм тет асатте. Унччен те пулмарĕ — автан авăтса ячĕ тет. Кăмака питлĕхĕ шалт! турĕ тет те, пӳртре шăп пулчĕ тет. Çакăн хыççăн асатте пĕрре те çывăраймарăм тет, ир пуласса аран-аран кĕтсе илнĕ те çутăлнă-çутăлман тарса килнĕ киле. Кайран вара урăх нихçан та никам патне те çывăрма кайман тет асатте.

Пĕрре çак Вĕреçĕлен аннине пĕр каччă сыхласа тăнă имĕш. Пӳрте кĕрсе кайиччен хăй тумне пытарса хăварнă, çакă каччă ăçта пытарнине сыхласа тăнă та лешĕ кĕрсе кайсанах тытнă та урăх çĕре пытарса хунă тет. Унтан вара тепĕр кунне çак çын, Вĕреçĕлен пулнăскер, арçын тет хăй, макăрса ыйтса çӳренĕ пулать. Тупса парсан тем те пĕр пама шантарнă тет. Тупса параççĕ те куна япалисене, лешĕ тухса каять çеç, кусен пӳртне вут тивсе илет. Тепĕр темиçе кунтан хăй каччи те вилет тет. Пытарса хурас пулман, ăна пама юрамасть тет çав, çунтарса ямалла тет. Вара ним те тума пултараймасть тет.

## 1046

Вĕриçĕлен ахаль чĕрĕ çĕлене аса илтерет тет. Он поç хора тĕслĕ тет, хӳри вара çĕленĕн пек тет. Çоннă пек вотăн-хĕмĕн чалкăшать тет хва. Хайхи çак Вĕриçĕлен хăй ернĕ çын патне кĕрес омĕн томтирне йывăç çине çакса хăварать тет те çын пулса кĕрет тет. Ернĕ хĕрарăмне премĕксем, канфетсем çитерет. Çав канфетсем, премĕксем пурте ĕне пăхĕпе сурăх пăхĕсем тет. Çавсене çитерет тет.

Малтан Вĕриçĕлен тĕлĕкре корнать тет, кайран вара çын полса пыма тапратать тет. Вĕриçĕлен трубаран кĕрет. Унтан хăтăлас текен çынсам картасем çине çава е çурла çакнă. Вĕриçĕлен тимĕртен хăрасса шаннă, хăшĕсем вара унтан хăтăлас тесе ак мĕн тунă тет. Çĕр варринче çарамас тухас пулать. Кайран киле çарамасах килес полать. Çакăн хыççăн Вĕриçĕлен пыма пăрахать тет.

Мĕнтен полнă-ха вăл? Çуратмасăр пăрахнă ачана çĕр йышăнмасть, çавăнпа вăл сывлăшра Вĕриçĕлен пулса вĕçсе çӳрет. Вăл çитĕнсех пырать, пĕчĕк ачаран каччă е хĕр полать, вара çынна тапăнать. Уйрăмах чирлĕ çынна.

## 1047

Вĕриçĕлен вăхăтсăр пăрахнă ачаран пулса кайнă. Арçын ача пулнă пулсан — Вĕриçĕлен пулнă, хĕр ача пулнă пулсан — Арçури.

Хайхи ача 18 çула çитсен унăн хăйне валли юратма юлташ шырамалла пулнă. Вăл арçын ача çумне мар, хĕр ача çумне çулăхнă. Пĕр-пĕр хĕр ача чирпе асапланса пурăнать пулсан вăл тохтăра ĕненмен, юмăçа ĕненнĕ, вăл больницăна кайман. Хĕнрен хĕне кайнă хĕр чирлесех кайнă.

Вот Вĕриçĕлен çав хĕр çумне çулăхнă. Вĕриçĕлен каçхине 12 сехетчен çӳренĕ. Чирлĕ хĕрсен анкартине вĕççе пырса пĕр-пĕр йывăç хăвăлне хăйĕн тумтирне хывса хунă та каччă пулса кĕнĕ. Каччи паллана каччă пек пулса куçа курăннă. Только вăл çынсем куç умне мар, çав чирлĕ хĕр куçне курăннă. Каччă çав хĕр патне çӳренине калаттарман. Каласанах Вĕриçĕлен чăмăртаса, чĕпĕтсе пĕтернĕ. Çапла ним тумасăрах пурăнсан çав хĕре вĕлернĕ.

Мĕнле уйăрмалла пулнă-ха Вĕриçĕлене?

Хĕрĕн çатта-çарамас пулса, питне-куçне çыхса лартса пĕтĕм халăх умне тухмалла пулнă. Çапла пĕр виç хут халăх куç умĕнче чупсан тин Вĕриçĕлен хĕртен уйăрăлнă.

## 1048

Эпĕ ун чухне ачаччĕ, урамра çарран чупса çӳреттĕмĕрччĕ. Сасартăк пĕри:

— Эй, ачасем, малти касра Энтрушка Вĕреçĕлене антарнă. Айтăр курма! — терĕ.

Эпир пурте çавăнталла чупрăмăр. Çитрĕмĕр те — чăнах та, çĕр çинче пĕр хуп-хура темĕскер лара парать. Этем тесен — этем мар, Шуйттан тесен — Шуйттан мар. Энтрушка чăнах та Вĕреçĕлен чĕлхи пĕлетчĕ. Вăл антарма антарнă, анчах хăпартма пĕлмест. Энтрушка ним тăваймасть. Вăл килне кайма тытăнсанах Вĕреçĕленĕ те ун хыççăн утать. Аптратсах çитернĕ. Вара халăх хушшинчен пĕри:

— Шетмĕри Карaçăм пĕлет хăпартма, — терĕ.

Вара ăна чĕнсе килчĕç. Чăнах та, Караçăм темĕскер мăкăртатрĕ те, ку хăпарса кайрĕ. Сывлăша кăшт хăпарсанах Энтрушка çине вут тăкма тытăнчĕ. Вара пурте тарса пĕтрĕç.

Çавăнтан вара Энтрушка вут шатрипе чирлерĕ: питне-куçне, ал-урине, хул-çурăмне — пĕтĕмпех шатра тухса тулнăччĕ.

## 1049

Ача чохне полас-ха вăл. Атăл хĕрне вутă (утă) тума кайса. Эп тăхăр çолта полса-и? Вот çан чох икĕ хут Вриçлен корса. Толтаччĕ, пăхап та — Вриçлен вĕçет. Малта такана пак, хыçалта вара хӳринчен хĕм сирпĕнсе пурать (пырать). Эх, эп шари! кăшкăрап çав хăранипе. Топ чарăнать мана илтсен; тата кăшкăрап, тата чарăнать. Атте тохрĕ те: «Ан кăшкăр, ачам, ан çиллентер ăна. Çиллентерме юрамас», — терĕ. Вара темле чĕлхе каларĕ те — Вриçлен малалла вĕçсе кайрĕ.

## 1050

Вриçлен вĕçсе пырнă. Ачасем: «Намăссăр», — тенĕ. Леш çаврăннă та ачасем патне çолăм тăкса пырать тет. Пĕр карчăк вара шор торпас çине Вриçлен чĕлхи каласа он еннелле печĕ тет ça торпаса. Вара Вриçлен хăй çолĕпе карĕ тет.

## 1051

Вĕреçĕлен вĕлерсе пытарнă пĕчĕк ачасенчен пулать. Вĕреçĕленĕн вĕçнĕ чухне пуçĕ хĕп-хĕрлĕ, хӳри хура. Ансан çын пекех, анчах ури вăрăм чĕрнеллĕ, хăй хӳреллĕ. Кайран кĕпе аркине тытса тăрсан Шуйттан анать. Хĕрес çакса ярсан макăрать тет, хĕресне илме ыйтать тет. Хĕресне илме юрамасть, илсен вĕлерсе хăварать тет. Хĕрес çакса ярсан урăх çӳреймест тет. Çын ытла хытă кулянсан Усал ерет тет. Вăл чӳречерен, алăкран, трубаран кĕрет. Çын пекех калаçать, кайран вĕлерсе хăварать тет. Вара ăна уйăрма питĕ йывăр тет. Кĕртмесен шутсăр хытă çĕмĕрттерсе çӳрет тет.

Карчăккипе старикки пурăннă. Вĕсен ача-пăча пулман. Килĕштерсе пурăннă. Арçынни ăнсăртран вилсе кайнă. Арăмĕ шутсăр кулянниппе Усал ернĕ. Хĕрарăм кунран-кун начарланса пынă, анчах та хăй хаваслă пулнă. Кумми унтан мĕншĕн хаваслине ыйтать. Ку: «Йăван килет», — тет. Кумми ăна: «Вилнĕскер килмест, вăл Усал», — тет. Хĕрарăм ĕненмест. Кумми те унта каять. Каç пулсан Йăван çитсе кĕрет. Ĕçме-çиме лартаççĕ. Кумми ĕçме тапратсан стаканне ӳкерет те ăна çĕртен илнĕ чух Йăванĕ хӳреллĕ, чĕрнеллĕ пулнине курать. Çур çĕрте Шуйттан тухса каять, каяс умĕн кăмака патне пырса куммине калать: «Сана та илсе каймаллаччĕ те, аçу чарать», — тет. Вăл кăмака патне пыраймаç тет иккен. Шуйттан тухса кайсан хĕрарăм пырса пăхать те, кумми вилсе кайнă тет.

## 1052

Ĕлĕк ачасем пуçтарăнса выртма кайнă, унта вĕсем лашасене пăхнă. Пĕррехинче çак ачасем патĕнчен темле хĕрлĕ çунакан япала вĕçсе каять. Ачасем кун хыççăн кайса пĕр яла пырса çитеççĕ. Çак япала пĕр пӳрт патне анса çухалать. Хайхи ачасем пӳрт патне çитсен пĕрине алăк умне сыхлама тăратса хăвараççĕ, ыттисем пӳрте кĕреççĕ. Ваттисенчен илтнĕ тăрăх, ачасем пӳрте кĕриччен пĕтĕмпех хĕреслесе хăвараççĕ. Пӳрте кĕрсен сак çинче пĕр хĕрпе капăр тумланнă каччă ларнă пулнă. Ачасем вĕсем ларнă сак çине вырнаçаççĕ. Вара майĕпен çак каччăна хĕстерме тытăнаççĕ. Хĕстерсен-хĕстерсен каччă яшт! сиксе тăрать тет кăмака мăрйи патне пырса çухалать. Ачасем урамалла чупса тухаççĕ. Алăк патне тăратса хăварнă ачанне алли-урисене веçех хуçса хăварнă пулнă, Вĕреçĕлен çавăнтан тухса кайнă тет.

Мĕншĕн-ха Вĕреçĕлен çак хĕр патне çакланнă? Çак хĕрĕн юратнă каччи сарăмсăр вилнĕ пулнă тет. Вара ку хĕр кунĕн-çĕрĕн йĕнĕ тет. Пĕтĕмпех минресе çитсен Вĕреçĕлен каччă пек пулса килме тытăннă тет.

## 1053

Пĕр салтак арăмĕ упăшки вилни çинчен хыпар илтсен питĕ хуйхăрнипе антрасах кайма пуçланă тет. Хăйпе пĕрле килĕнче та икĕ ачи пулнă тет. Кунĕн-çĕрĕн упăшки çинчен шухăшласа хуйхăрнипе, йĕнипе ун патне упăшки манерлĕ Вĕреçĕлен килме пуçланă. Каçхине, çур çĕр çитсен, чӳречерен шакканă та, çамрăк арăм уçса кĕртнĕ, ку упăшки пулса кайнă. Уншăн вăл питĕ савăннă. Çав каçран пуçласа кашнинчех килме пуçланă упăшки. Вăл упăшкине апат антарса парса çитернĕ. Упăшки вĕсене мăйăрпа хăналанă. Шуçăм киличчен вăл хăй яланах тухса кайнă. Çапла темиçе хут та пулса иртсен хĕрарăм аптраса çакăн çинчен кӳршисене каласа парать. Леш-

сем ăна апат çисе ларнă чух юри кашăкне çĕре ӳкерсе упăшкин урине пăхма хушаççĕ. Лаша ури пулсан вара ку Вĕреçĕлен çакланнине пĕлтереççĕ. Вĕреçĕлене ахаль хăпăтма май пулман. Хăй кайнă чух вăл ялан вĕлерсе хăварнă. Çавăнпа та хĕрарăм кӳршĕсем каланине итлесе çавăн пек туса пăхать. Тепĕр каçхине тепре чӳречерен шаккасан уçса кĕртет, сĕтел хушшине апат çиме ларсан юриех кашăкне ӳкерет. Кашăкне илнĕ чух упăшкин лаша урине курать, хăй нимĕн те каламасть. Ир енне упăшки тухса кайсан кӳршĕсем ăна урăх уçса кĕртме хушмаççĕ. Тепĕр каçхине хĕрарăм пӳртри пĕтĕм шăтăксене хĕреслесе выртать. Çур çĕр çитсен каллех чӳречерен шаккани илтĕнет. Хĕрарăм чӳрече патĕнче упăшки тăнине курать, анчах та уçса кĕртмест. Вара упăшки ăна çапла калать: «Паян юлашки каçчĕ, ман сире пурне те вĕлерсе хăвармаллаччĕ».

Çапла вара вăл Вĕреçĕленрен хăтăлса юлать.

## 1054

Пĕр арăмăн çамрăклах упăшки вилнĕ тет, çав арăм упăшкишĕн пит хыт кулянса, макăрса пурăннă та, каç пулсан вилнĕ упăшки килчĕ тет те калать тет: «Юратнă арăмăм, эсĕ ма пит хуйхăрса, кулянса пурăнатăн, акă малалла эпĕ сан пата кашни каçах килĕп те, чĕрĕ чухнехи пек, пĕр вырăн çинчех выртса-тăрса пурнăпăр». Вара чăнахах кашни каç арăмĕн упăшки килме пуçланă та, арăм типсе сарăхма пуçланă.

Пĕр вăхăтра çак арăмăн йăмăкĕ ларма хăнана пынă. Хайхи арăм тем сăмахра тапратса йăмăкне упăшки каç килни çинчен каласа панă та, йăмăкĕ акăшне каланă: «Эсĕ, акай, унпа типсе сарăхса кайнă-иç, апла вăл сан упăшку мар, вăл усал чир, Вĕриçĕлен пулмалла». Акăшĕ хăраса: «Ах, Турă, сырлах, Турă, усала сир, апла мана вĕлерет вăл, уна мĕнле уйăрас?» Йăмăкĕ каланă: «Акă кĕçĕр Турă умĕнче çурта çутăпăр та çĕрĕпех Турра кĕлтăвăпăр». Каç пулсан, иккĕшĕ чĕркуççи çинче Турра кĕлтуса ларнă вăхăтра, çур çĕр çитнĕ чух хайхи усал чир Вĕриçĕлен сын пулса, чӳрече патне пырса шак! шаккаса хаяррăн, сиввĕн калать: «Эсĕ йăмăкна, урăх сынна ма каларăн, каламан пулсан хамăн сын тăваттăмччĕ, халĕ ĕнтĕ санран уйрăлатăп», — тесе каласа хăварнă тет, вара Вĕриçĕлен урăх пыман, уйрăлнă, сивĕннĕ.

## 1055

Ытла макăракан сынна, чĕререн хуйхăрса минтер çине куççуль тăксан, чун-чĕререн юратнă сын вилсен çавăн сăнĕ пулса Вĕриçĕлен килсе кĕрет. Масар çинчен вут тăкса килсе е юпа, е йывăç çине тумне хăварса этем пулса кĕрет тет. Арăмĕ пулаканĕпе калаçса лараççĕ. Арăмĕ вара упăшкипе пурăннă пекех пурăнать. Çутă çуттармасть, сынна калама хушмасть хăй çинчен. Арăмĕ никама та каласа памасан çак упăшки сăнли ăна типĕтсе хăртса вĕлерет.

## 1056

Пирĕн хреснаннене Вĕриçĕлен ернĕччĕ упăшки вилнĕ хыççăн.

Каç пулсан яланах пирĕн пата пырса ларатчĕ. 9—10 сехетсенче килне сывăрма каятчĕ. Начарланса кайнăччĕ. Куна Вĕриçĕлен ернĕ пуль тетчĕç. Аттепе пĕчĕк пичче вара сыхлама пуçларĕç. Сыхласа илсе Вĕриçĕленĕн

тумтирне тупмалла мар çĕре пытарса хунă. Тимĕр ăшне хурсан илеймест тет вăл. Вĕриçĕлен вара кусенчен тумтирне таварса пама ыйтнă. Масар çине каялла кĕртмеççĕ тесе калать тет. «Эсир ăçтан пулса каятăр?» — тесе ыйтнă аттесем. Лешĕ: «Хĕрлĕ тăпрана хуман вилерен пулатпăр», — тенĕ тет. (Ĕлĕк ача пăрахнă та тарăнах алтса чикмен ĕнтĕ, тăмлă çĕре лекеймен.) «Кунта урăх килместĕп, — тенĕ тет, — пире çапла яраççĕ», — тенĕ тет.

Вилнĕ çыннăн чунĕ Усал аллинче пулнă ĕнтĕ вăл, Турă аллинче мар. Кайран вара пӳртне светит тунă. Светит тусан пӳрте кĕреймест тет вăл. Пӳрте кĕрейменнипе пӳрт кĕтессинчен çапса хăварать. Турă хăвачĕ кĕртмест ăна.

## 1057

Пĕр хĕрарăмăн упăшки шыва кайса вилнĕ. Вăл упăшкишĕн хуйхăрса ухмахланма тытăннă. Çывăрма та кĕлете куçнă. Ку хĕрарăм патне каççерен Вĕреçĕлен анма тытăнать. Хайхи хĕрарăма сăнама тытăнаççĕ. Вĕреçĕлен аннă хыççăн алăк патне пырса итлеççĕ: хĕрарăм кĕлетре такампа калаçать. Çĕрле кĕлете кĕме хăраççĕ. Ирхине ăна калаçтараççĕ:

— Марфа, çĕрле эсĕ кампа калаçрăн?

— Упăшкапа. Вăл каççерен ман пата килет. Мана та хăй патне чĕнет. Канĕхвит, пĕремĕк илсе килет. Халĕ те минтер айĕнче темĕн чухлех, çисе ярайманрăм-ха, — тет.

Выртакан вырăнне сирсе пăрахаççĕ те — унта сурăх, хур пăхĕсем темĕн чухлĕ тет. Марфа ашшĕ Вĕреçĕлене сыхлама шухăшлать. Вăл пăшал илет те кĕлете кĕрсе ларать. Çĕлен аннине сиссенех ашшĕ кĕлетре пăшал перет. Çĕленĕ вара кĕлет кĕтессине хытă кăна çапса хăварчĕ тет. Çавăнтан вара Вĕреçĕлен урăх анмарĕ тет. Хĕрарăмĕ те чĕрĕлчĕ тет.

## 1058

Камшăн та пулин чунтан-чĕререн йĕрсе макăрсан Вĕреçĕлен çав çын çомне çулăхать. Вăл камшăн макăрсан, çав çын сăнлă полса килет тит.

Пĕр хĕрарăмăн ывăлĕ салтакран аманса килет. Номаях та порнимаç тит, вилсе те каять. Кон амăшĕ ывăлĕшĕн колянма поçлать. Хытă макăрать. Кашни кон йĕрет. Чунтан-чĕререн макăрнипе çакăн патне Вĕреçĕлен ывăлĕ полса пырать. Вăл он патне кашни каç пыракан полать, каçхине хĕвел ансанах пырать те çор çĕрччен, автан авăтиччен, как автан авăтать, вăл çохалать.

Пӳртне питĕрнĕ полсан та çоровно* кĕрет тит. Вĕреçĕлен килнĕ çĕре ку хĕрарăм кантăксене оçса хорать.

— Çиччас ман ывăл килет, — тесе кĕтет тит.

Вĕреçĕлен килсе кĕрсен ăна хăналать тит, самоварсем лартса чай ĕçтерет:

— Çи-ха, çи, — тесе çитарать тит.

Вĕреçĕлен хăй вот-çолăмлă корăнса пырать тит. Çам пек пĕлĕтрен анать тит, хӳринчен вот-çолăм сирпĕнсе пырать тит, самолет вĕçнĕ пек, вăл вотпа çотатса çĕр çине анать тит. Çĕр çомне çитсен вара çоломĕ пĕтет тит. Вĕреçĕлен корăнми полать. Çталла каймаллине уш пĕлет тит. Вара çанта каять.

Ку хĕрарăмăн хĕрĕ амăшне тем поласран хăраса хăйпа исе каять те

---

* Пурпĕрех.

хӑйсем панче осрама поҫлать. Косен пӳртне ҫӑрапа питӗрсе илнӗ. Винтовкӑпа ҫак пӳрт тӑватӑ кӗтессинче тӑватӑ арҫын тӑраҫ те сыхлама пуҫлаҫ.

Хӗвел ансан ял вӗҫӗнче вот-ҫолӑм сирпӗтсе Вӗреҫӗлен анать. Пӳрт патне пырать те, ҫӑраҫҫи чӑнкӑртатни илтӗнет. Вара кусем винтовкӑран персе яраҫ. Вӗреҫӗлен орӑх килмеҫ вара ҫакӑнта.

### 1059

Вӗриҫлен ҫынна ернӗ чух — паллакан ҫын пулса, арҫынна ернӗ чух — кӳршӗри хитре хӗр пулса е ялти яшӑпа варлӑ хӗр пулса ерет.

Акӑ пӗр каҫ килтисем пурте ҫывӑрсан ку яш пӗччен лампа сӳнтермесӗр ларнӑ. Акӑ яшӑ юратнӑ, ялти паллакан хӗр, хитре, лайӑх, чечен тумланса, шур кӗпе-йӗм, ама, мӑя ҫакса, аллине кӑнчалаллӑ кӑнчалаҫҫи илнӗ те, пӳрте алӑк уҫса кӗчӗ те каларӗ:

«Кусан пурте ҫывӑрнӑ, эпӗ ларма килсеттӗм». Яшне ҫапла каланӑ: «Эсӗ те выртса ҫывӑр». Кӑнчалаҫҫине урайне тӑратса яш ҫумне вырӑн ҫине выртнӑ та яша кӑтӑклама, хыпалама тапратнӑ, пӑшӑлтатса ҫапла каланӑ: «Эсӗ мана юрататӑн пулсан иксӗмӗр пӗрле пурӑнӑпӑр, никама та ан кала, виличчен пӗрле пурӑнӑпӑр».

Яш ҫумне вырӑн ҫине выртсан хӗр пит вӗри, пӗҫерет тет, ҫак яша алхастарса виҫ-тӑват хутчен вараларӗ, ирсӗрлентерчӗ тет, яшши пӳртри ҫемйи илтесрен хӑраса выртать пулать. Хӗрӗ: «Ан хӑра, вӗсем илтмеҫҫӗ», — тесе ыталаса выртать тет. Выртсан-выртсан, пӳртрисем ан илтчӗр тесе, хӗре аҫам витсе, тула тухса витене лашана апат пама кайнӑ, яшӑ каялла кӗнӗ те, вырӑн ҫинче хӗр те пулман тет. Ҫапла ӗнтӗ юратса ернӗ хитре хӗр кашни каҫах никама систермесӗр яшӑ патне килет тет. Ҫапла пурӑнса яшӑ типсе хӑрса, сарӑхса карӗ тет те, вара килти ҫынсем: «Ку пурӑннӑ ҫӗртех типсе хӑрса кая пуҫларӗ, путлӗ мар, куна Вӗриҫлен, усал чир ермен-и вара?» Вӗриҫлен теме те хӑранӑ, усал чир ернӗ тенӗ. Хальхи яша пурте: кӳршисем те, ял-йыш та сисрӗҫ, вара калаҫма тапратнӑ: «Ҫавӑ (ятне каласа) ура ҫинче ҫӳренӗ ҫӗртех типсе хӑрса карӗ, путех ҫавна усал чир ернӗ. Каҫ пулсан Вӗриҫлене сыхлатпӑр», — тенӗ. Каҫ пулсан кӳршӗри, ялти яшӑсем виҫҫӗн-тӑваттӑн пухӑннӑ та пӳртре ларнӑ сыхласа. Сасартӑк хайхи Вӗриҫлен ернӗ яша чӗтретме тапратнӑ та, ҫӗре, урайне ӳкиччен ыттисем ярса тытнӑ, яша иккӗн-виҫҫӗн чармалла мар чӗтретнӗ, хӑй акӑ ҫапла калать: «Веҫа, прене ҫумӗнче сала кайӑк пӗр прене ҫинчен теприн ҫине сиксе вӗҫсе ҫӳрет». Ну, сыхлакансем пренесем ҫине хӗрес хураҫҫӗ, пуртӑ, ҫӗҫӗпе касатпӑр сана тесе хӑратаҫҫӗ Вӗриҫлене, усал чир ерни тата калать: «Веҫа, алӑк уҫса тула кӗлет кӗтессине кайса тӑчӗ». Лешсем пуртӑсем, ҫӗҫӗсем илсе шырама тухнӑ, анчах Вӗриҫлен кӑсен куҫне курӑнман, ҫапла вара чилай вӑхӑтчен кашни каҫ сыхласа, лампӑ, краҫҫин сӳнтермесӗр пурӑнса Вӗриҫлен яшӑ патӗнчен сивӗннӗ, урӑх пыман, яшӑ кайран сывалнӑ. Сывалсан кайран яшӑ каланӑ: «Ҫав хӗр пыратчӗ те, эсӗ ҫынна ан кала, иксӗмӗр пӗрле пурӑнӑпӑр тесе, ҫӗрӗпе аташса выртаттӑмӑр, вара намӑсланса, вӑтанса каламастӑмччӗ, кӑнтӑрла кунӗпе ӑйӑх килсе анасласа ҫӳреттӗм, ҫавӑнпа типсе хӑрса карӑм», — тесе каласа панӑ. Тата усал чир ҫыпҫӑннине малтанах сисҫессӗн кама курнӑ уна: ҫынна, йытта, кушака, лашана, йӑвӑҫа, юпана, кайӑка, ыттисене те — мӗн тӗл пулнӑ уна акӑ ҫапла, ҫын илтмеллех: «Мана Вӗриҫлен ерет», — темелле, вара Вӗриҫлен вӑтанса, намӑсланса ерейме, каласа памасан ернӗ тет.

## 1060

Куна лашасем çытарминче выртмара курнă. Акă уйра пĕччен ларакан йăвăçран, йăвăçĕ хăвăл пулнă та, вут пек хĕрлĕскер тухнă та хăй хура пуçĕпе унталла-кунталла пăхкаласа хĕп-хĕрлĕ кĕлеткипе вĕçсе пырать ял çине. Хăй вĕçсе пынă чух хăйĕн хÿри вĕçĕнчен вут хĕлхемĕ йăлтăртатса пырать, татăлса ÿксе çĕре тăкăнса пырать. Хăй арăм пурăнакан киле çитрĕ те тунтирне хывса йĕтем юпи çине çакса арăм патне кĕрсе кайрĕ. Вĕриçленĕн тунтирне тепĕр çын илсе урăх çĕре хунă, арăм патĕнчен тухсассăн тунтир çуккине курнă, çынтан макăрса, мана тунтирсĕр юрамасть тесе ыйтсан çынĕ тунтирне панă та, Вĕриçлен куçа курăнми пулнă. Выртмари çынсем калаççĕ: «Айтăр каялла вĕçсе таврăннине сыхлар». Пĕр сехет пек вăхăт иртрĕ те, арăмпа аташса вылярĕ пулать те хайхи хура пуçĕпе унталла-кунталла пăхкаласа, хĕп-хĕрлĕ кĕлеткипе, вăрăм пушă пек хÿрипе вутăнхĕмĕн тăкăнса вĕçсе таврăнать хайхи уйри йăвăç хăвăлне. Вĕçсе çитсе хăвăла кĕрсе карĕ те вара куçран çухалчĕ.

Лаша çытарминчи çынсем пурте пухăнса акă çапла турĕç: уйри улăма пухрĕç те хăвăл йăвăç тавра купаласа вут чĕртсе çунтарчĕç. Улăмĕ çатăртатса çуннă чух хайхи Вĕриçлен кушак пулса тухрĕ. Пĕр çытаракан ачийĕ кушака пăшалпа пенĕ те, кушак ури хуçăлнă, кушак куçран çухалнă.

Çав каçах хай арăм патне Вĕриçлен яш пулса пынă та каланă: «Ман кил-çурта çунтарчĕç, урана та пăшалпа персе хуçрĕç, санран ĕнтĕ сивĕнетĕп, урăх килместĕп, юлашкинчен выляса-калаçса тухса каятăп», — тесе сивĕннĕ те вара урăх арăм патне пыман.

## 1061

Вĕриçĕлен халĕ те нумай, каçпа нумай чух куратпăр, çĕрле çÿлтен вĕçеççĕ, хыççăн хĕм тăкса каяççĕ, вара Вĕриçĕлен ернĕ çын патне кил картине ÿкеççĕ. Пирĕн патра çынна Вĕриçĕлен ерет, ăна малтан тĕлĕкре курăнса çын пулса çавăрать тет. Вара куçăн çын пулса пырать тет, унпала çывăрма тытăнать тет. Вара ун пек çын типсе вилет. Çав Вĕриçĕлен çын пулса пырсан калама юрамасть тет, вара нумайăшĕ каламаççĕ, вăтанаççĕ калама, вара вĕсем вилеççĕ. Унтан хăтăлма та пултараççĕ. Çав Вĕриçĕлен ернĕ çын пасарта, ялта, чиркÿ панче вара калать, мана Вĕриçĕлен ерсе, çав çын пулса пырать тесе калать. Каласа çÿресен вара Вĕриçĕлен пыма пăрахать тет. Тата пÿртре тарпа пăшал переççĕ.

## 1062

Енчен те çын чире каять тĕк, вăл вара Вĕриçĕленпе пурăнать тесе калаççĕ.

Пĕр çын нумайччен чирлесе выртнă тет. Унăн арăмĕ ним тума пĕлменнипе кÿрше кайнă. Кÿрши пăшал йăтса кусем патне каçнă. Чирлĕ çын йынăшма пуçласанах кÿрши пăшалпа перет тет. «Мĕн турăн?» — тесе чирлĕ çын сиксе тăчĕ тет. Кун арăмĕ кÿршине услам çу парса ячĕ тет.

Кÿрши киле çитсессĕн пăхать тет, сарай патĕнче Вĕриçĕлен лара парать тет. Ăна леш çынни патĕнчен хăратса кăларнă тет. «Мĕн панине мана пар», — тесе কаларĕ тет Вĕриçĕлен пуçне ялтăртаттарса. Ку çынни ăна çу ывăтса пачĕ тет те, лешĕ çухалчĕ тет.

## 1063

Пирĕн кукамай питĕ калаçма юрататчĕ. Вĕриçĕлен çинчен вăл çапла каласа пачĕ:

— Ĕлĕк вĕриçĕленсем пит нумайччĕ, халь таçта кайса кĕчĕç вĕсем.

Ĕлĕк пирĕн ялта пĕр сар хĕр пурччĕ. Ку хайхи хĕр пĕр качча пит юратнă тет. Амăшĕсем ку качча парасшăн пулман тет. Каярах ку каччă авланса ярать. Ку хĕр кулянниппе ниçта кайса кĕме пĕлмест. Вара ăна Вĕриçĕлен ерет тет. Хайхи Вĕриçĕлен ун патне каччă пулса пырать тет. Пурăнсан-пурăнсан хăтана килчĕç тет ку хĕр патне. Килĕшнĕ тет. Хĕрĕ хăй пит каясшăн мар тет. Çав Вĕриçĕлен качча ан кай тесе пĕрмаях хĕнет тет. Çапах та хĕре качча параç, порнсан та ку пĕрмаях киле тарса кайнă тет. Ку каччи те хитрескер пулнă тет-ха ĕнтĕ. Юлашкинчен çав хĕр килне тарса килнĕ чух упăшки хуса çитсе тытса тӳрех Ачча чиркĕвне илсе кĕрет тет. Çавскерне турăш айне тăратса чан çапнă тет, кăкăрри çине хĕрес хунă тет. Кайран хĕр вара сывалчĕ тет.

## 1064

Ĕлĕк-авал çĕр çийĕн питĕ нумай пуçлă вĕриçĕленсем çӳренĕ алхасса. Нумай халăха вĕсем пĕтернĕ, çисе янă, вĕлернĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн çĕр çинче электричество пралукĕсем карса тухнă, электричество юписем лартса тухнă. Çавăнтан вĕриçĕленсем пралуксемпе юпасем çине çапăна-çапăна вилсе пĕтнĕ. Халĕ вĕриçĕленсем çук.

## 1065

Вĕриçĕлен çын пек пулать тет. Хыçалта пыршисем çакăнса пыраç тет. Хăйне вăл çавăнпа хыçалтан тыттармасть тет. Вĕриçĕлен хĕрсем ача пăрахнинчен пулса кайнă тет. Çавăнпа çын çумне çыпçăнать тет. Пĕлĕтрен çапçутă çулăмпа вĕçсе анса вăл пĕччен пурăнакан хĕрарăмсем патне савниййе упăшки пек пулса кĕрет тет.

Вĕриçĕлен пĕлĕтрен вĕçсе анать тет те çын пулса тăрать тет. Питĕ чипер каччă пулса тăрса улаха хĕрсем ларнă çĕре кĕрет тет. Пĕррехинче пĕр çамрăк Вĕриçĕлен аннине курнă тет те сыхласа тăнă тет. Вĕриçĕленĕн тумне илсе пытарса хунă тет. Вĕриçĕлен çур çĕр иртсен кайма пуçтарăнать тет, анчах япалисем çук. Япалисемсĕр вăл кайма пултарайман. Вара вăл хăйĕн тумтирне тупса пама йăлăнма пуçланă тет. Асăнмалăх хаклă парне парса хăварап тесе каланă тет.

Пытарса хуракан çынни чăтаймасăр Вĕриçĕленĕн япалисене кăларса парать тет. Вĕриçĕленĕ вара ăна хулпуççинчен çапнă тет те, çав çын ĕмĕрлĕхех чăлах юлнă тет.

## 1066

Вĕриçĕлен ернĕ çын мунчана кĕреймест тет. Вĕриçĕлен ернине çынна каласа пама юрамасть тет. Пĕр çын çапла каласа панă тет хăйне Вĕриçĕлен ернине. Тепĕр кунне Вĕриçĕлен çак çынсем патне пырса кĕрет тет те алăкне уçса ярса йăлт-ялт! пăхса илчĕ тет. Кĕрĕслеттерсе тапса пĕтĕм япаласене çĕмĕрсе пĕтерчĕ тет.

## 1067

Каçхине пĕр хĕрарăм мунча кĕме кайнă. Япалисене мунча çенĕкне хурса хăварнă. Вĕриçĕлен пынă та, хăйĕн тумтирне хывса урăхла тумланнă та кӳршĕ хĕрарăмĕ патне кĕрсе кайнă. Ку хĕрарăм мунчаран тухнă та, тĕттĕмре пăхсах тăман-и, хăйĕн кĕпи вырăнне Вĕриçĕлен кĕпине тăхăнса килнĕ. Çывăрма выртнă. Вĕриçĕлен тухрĕ тет, пычĕ тет хăйĕн япалисем патне, ку хĕрарăмăн япалисем çеç çакăнса тăраççĕ тет. Тытăнчĕ тет макăрма. Хĕрарăм та тытăнчĕ тет макăрма. Макăрма чарăнас тесен те чарăнаймасть тет. Çĕр çывăрмасăр макăрать тет. Кашни каçах макăрать. Хĕрарăм начарлансах кайрĕ тет. Çынсемпе те калаçми пулчĕ тет.

Ватă çынсем ку хĕрарăмăн кĕпине илчĕç тет те юпа çумне шаккаса мунчана кайса пăрахрĕç тет.

Унтанпа хĕрарăм йĕркеллĕ пурăнма пуçларĕ тет.

# Вупăр

## 1068

Вупăр — çынна пусмăрлакан усал-тĕсел. Вăл Уйăха çиет те тĕттĕм туса хурать. Пилешĕн сенĕк пек юплĕ туратне çурмалла çурса пемелле, вара Вупăр Уйăха çиме пăрахать.

## 1069

Çĕрле çын çывăрнă чухне Вăпăр пусать теççĕ. Вăпăр пуссан çын йынăшать, кăшкăрсассăн — сасси тухмасть. Вăпăр пусма усал çын çӳрет теççĕ. Кам Вăпăр пуснине пĕлес тесен, пӳртре çывăракан çынсенчен пĕри Вăпăр пуснă çын кăшкăрма тытăннине илтсен: «Шăтăк, шăхăр чăр!» — тесе каламалла. Çапла каласан Вăпăр пусма килнĕ çын пӳртрен тухса каяймасть тет, вăл мĕн те пулин — е кушак, е урăх япала — пулать тет. Çуртри çынсем вара пӳртре ют кушак пулсан унăн питне ĕнтсе яраççĕ, урăх япала пулсан мĕн те пулин пăсса, çĕмĕрсе тула кăларса ывăтаççĕ тет. Вара тепĕр кунĕ Вăпăр пусма пынă çын чирлет тет. Вăл кушак пулнă пулсан унăн пичĕ пĕтĕмпе çунса тухать тет. Кушакăн урине çапса амантнă пулсан Вăпăр пусма пынă çыннăн ал-урине амантать тет.

## 1070

Вупăр çынна виличчен виçĕ хут пусать тет. Хуть кама та пусать тет, вара çынна хускалми тăвать тет. Пĕрре асанне йăмăкĕ патне каçпа кĕрсен асанне йăмăкĕ ыйтнă: «Кам-ха эс?» — тесе. «Эп Вупăр», — тесе каланă тет.

## 1071

Эпĕ чăланта çывăраттăмччĕ. Хĕлле мар-çке, пӳртре çывăрмастăн çулла. Темĕскер хама хупласа хунă пек туйăнчĕ. Çак япала мана пуса пуçларĕ. Чăланта тĕттĕм пулнă пирки нимĕн те курăнмасть. Эпĕ Валери хăратасшăн

çӳрет пуль терĕм. «Валери, ан кансĕрлесе çӳре-ха», — терĕм. Темшĕн-çке хам сасса илтмерĕм, сас тухмасть. Вара сутă çутас терĕм. Юрать-ха, çутă çутмалли хамăн койкăпа юнашарах. Света çутрăм та темĕскер пысăк япала алăкран тухса кайнине куртăм. Ку Вупăр пулнă иккен. Вăл çывăракан çынсене килсе пусать тет. Çавăнтанпа пӳртре çывăракан пултăм.

## 1072

Вопăр карчăксам калăм каç çырмара валашка полса выртаччĕ тет. Çынсам кайнă та — портăпа каснă, кăшкăрать тет вара çав каска.

## 1073

Эп вăййа тухнă. Кайран вите çине килсе выртрăм. Пусма тăрăх кăнтăк-кăнтăк хăпарать темскер. Кайран урасем хускалми пулчĕç. Хам та тапранми пултăм. Кайран шăнăр туртакан пулчĕ. Вупăр пуснине вылььăхсене каламалла тет. Вара урăх Вупăр пусмасть тет. Эпĕ çывăрса тăрансанах лашана каласа патăм. Урăх мана Вупăр пусмарĕ.

## 1074

Питĕ ватăлса-йӳтесе кайнă карчăк Вупăр пулать тет. Çак Вупăр карчăкки виличчен ялти пĕр çынна хăй ĕçне вĕрентсе хăварать тет. Вĕсен çапла вĕрентсе хăвармалла. Çавăнпа та çĕр çинче вупăрсем нихăçан та пĕтмеççĕ.

## 1075

Вупăр вăл çынна пусать. Çынна пусмасан — пĕр кун та пурăнаймасть тет, питĕ хытă чирлет тет. Вупăр çĕрле çӳрет тет. Мăрьеренн вĕçсе тухса çӳрет.

Вупăр пусмасса кил-çуртра пăшал переççĕ. Вара Вупăр килме пăрахать.

Вупăр пулса çӳрекен карчăк кăнтăрла киле килес пулсан алăк патне йĕпсем хумалла. Вара пĕлме пулать вăл чăн та Вупăр иккенне, мĕншĕн тесен пӳртрен тухса кайма пултараймасть е питĕ вăрахчен ларать. Хăш чухне тӳсейменнипе: «Алăк патĕнчи йĕппĕре илĕр-ха», — тет. Вара йĕппине илсен тухса кайма пултарать.

Вупăр çынна курăнса çӳремест, çĕрле çӳрет. Вăл çынна хытарса лартать. Çынна пусма та пултарать. Çын патне çывăрнă чух пырать. Çынни кăшт хускалсанах тарать. Е çавăнтах кушак е тата мĕн те пулин пулса выртать. Вупăр хăй юратакан çынна çеç пусать каçсерен, хăйне килĕшмен çынна пусмасть. Вупăр ытларах хĕрарăмсене пусать.

Икĕ кĕтӳç каççерен масар патне лашисене çитерме çӳренĕ. Пĕр кун — пĕри, тепĕр кун — тепри...

Кулленех пĕрин вил тăпри çине пăру пырса выртать тет. Вил тăпри çинче йăваланcах макăрать тет. Икĕ кĕтӳç те куллен çавна кураççĕ. Пĕр каçхине иккĕшĕ те каяççĕ, пăрава тытма шутлаççĕ.

Акă каллех пăру вил тăпри çинче тет. Кусем пăрава măйĕнчен вĕренпе

çавăрса илеççĕ, хӳринчен ярса тытаççĕ. Вара хĕне-хĕне хăйсен ялне илсе таврăнаççĕ. Ялти урама килсе кĕрсенех пăру иккĕмĕш килĕре чарăнчĕ тет, унтан хапха патне пычĕ тет. Хапха патĕнче пĕр витре шыв ларнă, кĕтӳçĕсем ăна тапса яраççĕ. «Пĕр витре шыв ăсса парăр-ха», — тесе макăрать тет пăру çын сассипе. Вара кусем шыв ăсса панă. Пăру витрери шыв ăшне пуçне чиксе кăларчĕ тет те ватă карчăк пулса тăчĕ тет. Хĕненĕрен кăнкăвак пулса кайнă тет хăй. «Ачасем, тархасшăн, никама та нимĕн те каласа ан парăр», — тесе йăлăнма пуçларĕ тет. Вара кусене хăна турĕ тет, укçа пачĕ тет. Çакăн хыççăн карчăк пăру пулса масар çине килме пăрахрĕ тет, ялти çынсене те пĕрре те Вупăр пусмарĕ тет. Карчăк урама тухса та çынна курăнса çӳремен урăх.

Вупăр ан пустăр тесен çынсене Вупăр пусни çинчен каласа памалла. Вара Вупăр сивĕнет тет.

Пĕр Вупăр карчăкки яланах кӳршĕ хĕрарăмне пуснă тет. Пĕррехинче кӳршĕ хĕрарăмĕ пасара кайнă. Каçхине Вупăр карчăкки пусма каяйманнине пула аптраса ӳкет, чирлесе вилес патне çитет. Вара чăтаймасăр хăй юратнă таваннех кайса пусать. Тепĕр кунне: «Каçар мана, эпĕ сана пусрăм, чутах вилеттĕм, кӳршĕм пулмарĕ», — тесе калать тет.

Вупăрсем шап-шурă кушак, кушак кайăкĕ, шур путек е пăру тата тем те пĕр те пулса çӳреççĕ тет.

Вупăр пулас тесен сĕм çĕрле хуп-хура кушак тытмалла тет. Çавна çĕрле хура, тĕттĕм мунчана илсе каймалла, пусмалла. Кушакăн тирне сӳсе уйрăм хумалла, шăмми-шаккине пĕр çĕре уйăрса хумалла, ашне уйăрса хумалла тепĕр çĕре. Вара Вупăр вĕçсе килсе çитет те хăех Вупăр пулма вĕрентет.

## 1076

Вупăр — çын пекех кĕрет, хура вăл, çăмламас, çын çине лапах выртать. Йĕрекен, акăш-макăш хурлăхлă çын патне пырать. Вăл çавăран, чăх пăхĕнчен хăрать теççĕ.

Ман упăшка урине хуççан курнăччĕ эпĕ ăна. Малтан пĕрре килнĕ хыççăн, кайран пуç айне çава, чăх пăх хуратчĕç. Çав каç каллех килчĕ те хăпарса выртрĕ, пусма тытăнчĕ. Чĕнеп, сас тухмасть. Çавана тытрăм та ывăтса ятăм. Кайран вăл çухалчĕ. Кĕпе аркине, ура тĕпне, пуç айне чăх пăх хуратчĕç.

## 1077

Лопăр посать. Манăн хĕрсеме Лопăр посса. Эпĕ выртап. Алăкпа пĕр ача кĕчĕ те хăма поçĕсем çинче ташласа тăрать. Нăмай та полмарĕ, хĕрсем (хĕр полтăрĕ): «Ай-ай, ай-ай!» — теме поçларĕ. Карян Лопăр ойрăлса кайрĕ. Вара хĕрсем: «Мана Лопăр посрĕ», — терĕ. Ехрем пичисен Вaçли арăмне Лопăр час-часах посатчĕ.

## 1078

Вупăр вăл — курăнман усал сывлăш. Çывăрнă чухне сăмсаран юн ĕçекен япала. Вупăр пуснă чухне вăранас тесен те ниепле те вăранаймастăн. Çын чĕнсен тин вăранатăн. Тĕлĕк те мар! Вăранса куçа уçаймасăр выртатăн.

Мана пĕчĕк чух сĕре кăна Вупăр пусатчĕ. Майрук мăнакка ура пӳрни хушшинчи тарне шăршлама хушрĕ. Çавăн хыççăн чăнах те пусма пăрахрĕ.

## 1079

Вăпăр — хаяр. Вăл çынна пусать. Вăпăр хăракан çын çумне çулăхать. Хăраман çынран вăл хăй хăрать. Вăпăр пуснă вăхăтра çыннăн кĕлеткине йывăр, çурăмне темĕскер чиккелет. Вăпăр ача çумне çулăхать. Вăл ăна çывăрттармасть, ăна пĕр вырăнта выртттармасть, макăртать. Кун пек чухне ача çурăмне амăшĕн кăкăрĕ сĕчĕпе сĕрмелле. Сĕт çурăм çинчи шăртне кăларать. Кун хыççăн ача лăпланать. Вăпăр ан пытăр тесе ачи минтерĕ айне çĕçĕ е хачă хумалла.

Вăпăр мăн çынна та пусать. Вăпăр пуснă çынна çывăрма чăрмантарать. Акă мĕн каласа парать кун çинчен Таймуххине Хĕртилет аппа: «Пĕчĕк чухне эпĕ питĕ хăраттăмччĕ. Манăн шăллăм пурччĕ, вăл хăрамастчĕ. Эпĕ кăмака çинче çывăраттăмччĕ. Каçхине мана ялан Вăпăр килсе пусатчĕ. Кун çинчен эпĕ шăллăма каларăм. Вăл кăмака çинчен анчĕ те тула тухса кайрĕ. Вăл кайран кĕчĕ те каларĕ: «Тек ан хăра, аппа, эпĕ Вăпăрне тула илсе тухса кайрăм. Вăл пусма çине лач! турĕ. Вăл тек кунта килеймĕ». Чăнах та, кун хыççăн тек ман пата Вăпăр çулăхмарĕ. Вăпăр хăракан çынна хăратать тени тĕрĕсех пулнă пуль.

## 1080

Вăпăра чăвашсем çын теççĕ. Вăпăра каякан çыннăн хулĕ айĕнче шăтăк пур тит, вара çав çын кушак та, тăла варри те, урăх япала та пулать теççĕ. Вăпăр вăл çынна çывăрнă чухне пусса шăн-шака хытарса лартать те вара кача пӳрнене хускатсан тарать тиççĕ, вара Вăпăр пусакан çынна пилеш хĕрес çакаççĕ е тата юмăça, вĕрӳçе кайса чĕлхе вĕртеççĕ, вара пăрахăç пулать.

## 1081

Вăрман хĕрринче (в д. Подлесной) пĕр хĕрарăм калать: «Пĕрре мана Вупăр ерчĕ, — тет. — Вупăр пынă сасса илтсех выртаттăм, — тет, — вăл мăшăлтатса пыратчĕ те ман çине хăпарса выртса сывлăша хупласа илет, сывлама та памасть, сасса та кăлармасть, вырăнтан ура-алла та сиктермелле мар, пӳрнесене те тапратмалла мар. — тет. — Пăртак тăрсан вара хăех анса каять, — тет. — Кашни каç пыра пуçларĕ, вара эпĕ хам пата пилеш патакки хура пуçларăм та, тин пăрахрĕ», — тет.

## 1082

Вупăр этем пулса килет. Вупăр пуса-пуса усал илешет.

Пуç айне çăкăр, шăпăр хумалла. Вупăр пуссан шăрпăк чĕртсе пăрахмалла — куçне кĕрет те каять. Вупăра шăлан хуллипе хăваламалла. Килте шăлан хуллисĕр тăмалла мар, вăрмантан татса килмелле. Масар çинчине татмалла мар.

Вупăр хура пальтопа карчăк пулса килет. Шăлан хуллипе хĕнесе:

— Тухса кайăр, куçăр-пуçăрсене шăтарса пĕтереп, кайăр! — тесе вăрçса хĕнемелле шăлан хуллипе Вупăр ернĕ çынна, пӳрт ăшне, стенине, урайне, çинĕкне, пусма çине хĕнемелле. Виçĕ каç хĕнемелле.

## 1083

Вупăра Турă тесе шутламан, вăл ахаль çынтанах пулнă теççĕ. Вăл уйăха та çиет тенĕ, çынна та пусать тенĕ; Вупăр пуснă çын пĕр хусканайми пулса выртать тет; Вупăр пуснине кил-йышсем сиссен хăвăртрах чӳречесем, алăксем çине вĕри кĕлсем хурса тухнă, вара Вупăр тухса тарнă чухне тути-çăварне ĕнтсе кайнă тет. Çав Вупăр пулнине пичĕ пиçнĕ тăрăх кайран пĕлме пултарнă тет. Арçынна — матка Вупăр, хĕрарăма — арçын Вупăр пусать теççĕ.

## 1084

Чăвашсем тата çынсем хушшинче Вупăр пурăнать тесе ĕненеççĕ. Вупăра пуласса пĕтĕмпех сӳлли кайнă* карчăк пулать теççĕ. Çав ватă карчăк мунчана каять тет те хăйĕн хĕресне тул енне хывса хăварса çаппа-çарамасах: «Эй, Ийе, мана Вупăр пулма пулăш», — тесе мунча ăшне кĕрет тет. Ийи вăл кĕриччен вун икĕ витре кĕрекен каткана шыв тултарса хурать тет. Карчăкки кĕрсен вара мунчари пур пек чултан, пуринчен те, пĕрер пĕчĕк катăкшар катса илсе çав каткана ярать тет. Унтан хăй шыв çине вун иккĕ сурса вун икĕ хут кĕрсе тухать тет те кайран карчăка: «Вырăс ийи туррине пăрахатăп, вĕсене пăхăнмастăп», — тесе каласа çав шыв ăшне вун икĕ хут кĕрсе тухма хушать тет. (Вăл вун икĕ хут кĕрсе тухни вун икĕ çул пурăнассине пĕлтерет тет.) Карчăкки кĕрсе тухсан ăна мунча лапки çинче çывăрма хушать тет. Лешĕ нимĕнне пĕлмесĕр пĕр самантрах çывăрса каять тет. Тĕлĕкре ăна ийесем тем те пĕр тума вĕрентеççĕ тет тата хăйне çынсем тытсан епле тарса хăтăлмаллине те вĕрентеççĕ тет. Ирхине тăрсан çынсене тăвас тесен çав карчăка тем те тума пултармалла пек туйăнать тет тата пĕр минутрах виç-тăват пин çухрăма калла-малла хутламалла пек туйăнать тет. Çапла вăл вара чăн-чăн Вупăрах пулса каять тет. Вăл хăйне кам çиллентерет, ăна часах ерсе пусма тапратать тет.

Тата вăл уйăх çутинче хăй тарса хăтăлаймасан Уйăха çисе ярать тет те тĕттĕм çĕрте çиччас куçран çухалать тет. Вăл Уйăха çисе ярсан çынна питĕ çыпăçать тет, пĕр те пĕр вăл çаклансассăн çын вара урăлаймасть тет: ăна çаплах пусса начарлатса вĕлерет тет. Çынна пусни ăна хăй упăшкипе пурăннă пекех туйăнать тет.

Алексей юлташăм мана Вупăра çын çинчен акă çапла уйăрса яма пулать терĕ: «Çынна Вупăртан хăтарас тесен Вупăр çынна ернипе ерменнине маларах сисес пулать. Акă ăна мĕнле сисмелле: çын çывăрма выртсан чăн малтан хăрлаттарать пулсан е йынăшса выртать пулсан ăна Вупăр ернĕ. Çав Вупăр çынна мăйĕнчен икĕ аллипе тытса пăвать тет; çын вара сывлăш тухаймасăр хăрлаттарма тытăнать тет.

Вупăртан çынна уйăрас пулсан чăн малтан çав самăй йынăшса выртнă чухне пилеш хулăпа çапас пулать, унпа та уйăрăлмасассăн пилеш шывĕпе çумалла, вара вăл ун патне ниепле çывхараймасть тет. (Пĕр витре шыв çине пилеш хуппи ярсан, çавна пилеш шыв теççĕ.)

Çийĕнчех сисмесессĕн кăсемпе те тата ниепле япалапа та хăтарма пулмасть; кайран-кайран ăна сыхласа тытас пулать.

Акă ăна эпир хамăр пиччене ерсен мĕнле тытрăмăр: пĕлтĕр ыраш вырнă

* Йӳтенĕ, сӳлтен кайнă.

вăхăтра хирте эпир кăнтăрлахи апат çисе тăрансан яланах канма выртаттăмăр. Пирĕн пичче çавăн чухне темшĕн кашни кăнтăрла апатĕнче «пуç ыратать те, вăй çук» тесе çăкăр та нумай çиейместчĕ, яланах выртатчĕ.

Вăл çывăрса кайсан малтанах хăрлатма тытăнатчĕ те унтан вара çывăрса кайсан чиперех йынăшма тытăнатчĕ. Çак пирĕн пичче кунран-кун тенĕ пек начарлана пуçларĕ. Пирĕн атте вара: «Виçĕм кун каç уйăха Вупăр çирĕ. Çав вăхăтра малти чӳрече çине вĕри кĕл сапма астуман, путех çавăнтан пуль-ха ку», — терĕ. (Вупăр пуринчен ытла пӳртре малти чӳречерен кĕрет тет, çавăнпа уйăха çинĕ вăхăтра малти чӳрече çине вĕри кĕл сапаççĕ, вăл вĕри кĕл урлă ниепле те каçаймасть тет.)

Пĕр каçхине эпир хиртен киле таврăнсассăн аттесем пиччене пилеш хуллипе çапрĕç тата пилеш шывĕпе те çуса пăхрĕç, пирĕн пичче çапах сывалмасть, кунран-кун начарлана пуçларĕ. Пирĕн атте вара: «Çук, кăна тахçанах лекнĕ курăнать, кăна часрах тытма пикенесчĕ, Ивана çаплах вĕлерсе ярăпăр», — терĕ. Пĕр каçхине эпир апат çирĕмĕр те пурте çывăрма выртрăмăр: эпĕ шăллămпа тĕпеле выртрăм, пичче кăмака умне выртрĕ, атте малти чӳречене уçса вăрăм сак çине выртрĕ.

Эпир пĕр ыйхă çывăрнă пуль çав, манăн хăлхана: «Чăх, чăх», — тенĕ сасă кĕрсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, пирĕн малти чӳрече шалтăрт! турĕ. Пирĕн атте: «Акă хайхине хупăрларăм, часрах тăрăр», — терĕ. Эпир аннесемпе тăрса хăй çутрăмăр та, ну, хайхине сакайсенче каптăртаттарма пуçларăмăр, анне малти сака уçрĕ те: «Ай, Тур, çырлах!.. Ку кам минтерри?» — тесе шари! çухăрса ячĕ. Атте чупса пычĕ те минтере: «Э, эс-и-ха ку минтер пулса выртнă!» — тесе урайне пĕррех çĕклесе çапрĕ. Хай минтер çĕре ӳкрĕ те пĕр самантрах куçран çухалчĕ. Унтан тата шыра пуçларăмăр çакна, хай шăпăр шăтăкĕнче каллех килте çук пукан вырта парать. Çакна атте каллех пăвшăпа* виççĕ труках чăвăшлаттарчĕ. Ку хайхи, пӳртрен тухса тарма ниçта та шăтăк çукскер, урăх куçран çухалаймарĕ: кăвак кушак пулчĕ кайрĕ. Атте тепре çапрĕ те, хамăр кӳршĕри Салухха карчăк пулчĕ тăчĕ. Атте кăна: «Эй, сӳпĕлти, сӳпĕлти, мĕн эс кунта ватă пуçупа ухмахланса çӳретĕн, кантура паратăп вĕт ĕнтĕ», — терĕ. Лешĕ вара: «Ах, ан тив, Сергей! Ан тив, Сергей! Урăх килместĕп», — тесе малти чӳречерен тухса кайрĕ. Ирхине çав карчăк килне кайса пăхатпăр та, ку вырăн çинче ахлатса вырта парать. Пире курчĕ те ку пуçĕ çинчен çиччас кĕрĕкпе пĕркенсе выртрĕ.

Çапла хăтланса эпир Вупăр мĕн иккенне пĕлтĕмĕр вара. Çавăнтан кайран çав Салухха карчăк пичче патне мар, ахаль чухне те килесси-тăвасси пулмарĕ, унччен пирĕн патăртан тухма та пĕлместчĕ».

## 1085

Вупăр темĕскерле усал сывлăшпа пулать тет. Хăш-хăш çынсем тепле аташса Вупăр пулаççĕ тет. Вăл Усал аташтара пуçласан çынах йытă та пулать тет, кушак та пулать тет. Çынни ăна сиссен те ни сиккелеймес тет, ни пуплеймес тет. Кача пӳрнине сиккелеттермелле тет, вара каять тет. Кама та пулин Вупăр пусма пырсассăн пĕрерĕшĕ тăрса пӳртри пур чĕр чунсем çине, алăк анине вĕри кĕл, хăть тимĕр татăкĕсем хурса тухас пулать тет. Вара Вупăр ниçта та тухса кайма шăтăк тупаймасăр ют япала (хăть алшиш, хăть тăла варри татăкĕ пек) пулса выртать тет. Çав ют япа-

* Пушăпа.

лана пӳртре шыраса тупса çĕçĕпе паллă туса ярсассăн çав палла пĕр-пĕр çынра курма пулать тет. Пĕри ĕлĕк çапла çывăрма хăтланса выртать тет, хăйсен пӳртне тĕнĕрен темскер кĕчĕ тет. Ку хуллен тăрса чӳречисем умне тата алăк янахĕ çине вĕри кĕл сапса çӳрерĕ тет: хай утрĕ тет те, пĕр ют кушак пур тет. Çавна сăмсинчен хăйăпа тытса пĕçерттерчĕ тет те, ирхине хăйсен кӳршиех тет, çав çыннăн сухалĕ вутпа ĕнсе кайнă тет.

Тата вăл Вупăр Уйăха та питĕ çиет тет; çĕр çинчен пăхса тăрсассăн Уйăха Вупăр çини чиперех курăнать тет: тепĕр Уйăх пекех, темĕскер хупхураскер чиперех пырса хупăрласа, ыталаса илсе çие пуçлать тет. Çавăн чухне пăшалпа тĕллесе персессĕн Вупăр каять тет.

Çапла пĕрреччен виçĕ Вупăр Уйăха çиме канаш туса кайрĕç тет. Хăйсем калаççĕ тет: «Çиме пуçланă чухне Турра асăнса çиес мар», — тесе калаççĕ тет. Çитсессĕн çиме пуçласанах пĕри астумасăр Турра асăнчĕ тет. Вара виççĕшĕ те çĕре ӳкрĕç тет. Турра асăнакан улăм ури çине ӳкрĕ тет, иккĕшĕ юпасем тăрне пулчĕç тет.

## 1086

Вупăра Шуйттан теççĕ: вара хăш çынна пусас чух алăк уçса пĕр-пĕр япала пулса кĕрсе çын çине хăпарса выртать теççĕ. Вĕри кĕлпе сапсан хăрать теççĕ. Арлă-арăмлă çынна тивмест, хусах çынна хытă тапăнать теççĕ.

## 1087

Çынна вупăр пуснине илтсен калас пулать: «Шăтăк-çурăк, тăр-р-р!» Çапла каласан Вупăр тарать, тараймасан тăла варри, мунчала пулса ларать.

Уйăха Вупăр çинине курсан: «Вупăр çулĕ татăлтăр, Вупăр ӳктĕр!» — тесе калас пулать. Тата вутпуççипе перес пулать. Вара Вупăрăн тути йăлт çунса каять тет.

## 1088

Пĕррехинче пирĕн пата кӳршĕ хĕрарăмĕ Нина аппа килнĕччĕ. Вĕсем аннепе чылай калаçкаларĕç. Нина аппа каçхине хăйĕнпе мĕн пулнине аннене каласа пама пуçларĕ:

— Çывăратăп çапла, пӳртре никам та çук у кунхине. Нумай та вăхăт иртмерĕ, алăк сасси пулчĕ. Эпĕ чиперех питĕрсе кĕнĕччĕ вĕт-ха тесе шухăшлатăп. Кăшт вăхăт иртсен хам та сисмерĕм, сывлама йывăр пулса кайрĕ. Ман çине шур кĕпе тăхăннă, шур сухаллă, вăрăм чĕрнеллĕ, калама çук илемсĕр çын ухрĕ те ларчĕ. Çухăрас тетĕп — сас тухмас. Тăрас тетĕп — вăй çук. Тĕртсе ярас тетĕп — алăсем хускалмаççĕ. Ну, вилтĕм пуль тесе шутлатăп. Асилех кайрăм Вупăр тытсан кача пӳрнине хускатмалла тенине. Пĕтĕм вăя пухса пӳрнене хускатрăм та лаштăрах сывласа ятăм: «Эй, Турă, Турă теречи, усал-тĕсĕлсенчен хăтар мана». Чăнах, тек килмерĕ вăл ман пата çак сăмахсене каланă хыççăн.

## 1089

Вупăр вăл уйрăмах хĕрарăм килне пырать тет. Хĕрарăм çывăрса кайсан Вупăр ун çине выртать тет те пăвма пуçлать. Вупăр вăл кушак та, çын пек те, упăте те пулать тет. Хĕрарăм вара йынăшма пуçлать тет. Çав вăхăтра Турра пуççапмалла тет, вара Вупăр çухалать.

## 1090

Пĕрре çапла хама та Вупăр мĕнле пуснине сисме тӳр килчĕ.

Юнашар пӳлĕмрен пĕри сирпĕнсе тухрĕ те тарăннăн сывлама пуçларĕ. Мĕн пулчĕ тесе ыйтсан çапла каларĕ:

— Ара, Вупăр упăте пек хăйĕн çăмламас аллисемпе мана мăйран пăвма пуçларĕ. Хам çывăрмастăп вĕт, анчах ниепле те хăтăлма май çук. Пăвать те пăвать. Кăшкăрас тетĕп, сас çук, çăвара уçас тетĕп — уçăлмасть. Аран-аран сирсе пăрахса тăрса лартăм.

Пĕрре каçпа çывăрма выртрăм, çывăрса та кайнă. Çапла вăранса кайрăм та алăка уçса кӳршĕ Кĕркури пичче кĕнине куртăм. Ку старик мĕншĕн çӳрет-ха тесе шухăшлатăп. Хам вара ăна алă тытас-ха тетĕп. Анчах вырăнтан та хускалаймастăп. Тĕпелелле иртрĕ, тем пăхкаласа çӳрет, унталла-кунталла утать. Эпĕ пĕр сăмах та чĕнейместĕп, вырăнтан та хускалаймастăп. «Мĕн ĕçлесе çӳретĕн кунта эсĕ?» — тесшĕн, пачах та чĕнейменнипе куçа мăчлаттарса çеç пăхса выртатăп.

Çӳрерĕ-çӳрерĕ те ман çума пырса алăпа урана хăй айне туса выртрĕ. Туртатăп алла — илĕнмест, туртатăп урана — хускалмасть. Тĕртсе те ярас тетĕп, хам вара мĕнле хускалмасăр выртнă, çаплипех выртатăп, йăшăл та тăваймастăп.

Алла çĕклесе сăхсăхаймастăп сăхсăхас тесен те. Турра асăнсанах хам çывăрса кайнине те туйман.

Ирпе тăтăм та, ман алă та, хăрах ура та хытса ларнă.

Вупăр, Вупăрах пусса кайнă.

Çур çула яхăн кайран больницăра выртса тӳрленсе тухрăм.

## 1091

Каç çывăрнă чух хăш çынна Вăпăр пусать теççĕ, çав Вăпăр пуснă чух çын шăн-шакĕ йывăрланса хытса ури-аллине тапратаймасăр анрашса выртать. Пӳртрисем çын анрашнине сисеççĕ те: «Хайхи Вăпăр килчĕ, шăтăк-çурăк чăр пултăр», — тесе алăк патĕнчи пĕчĕк чӳречене уçа-уçа шалт-шалт тутарса хупаççĕ. Вара хайхи Вăпăр тухса тармалли çук пирки, «шăтăк-çурăк чăр пултăр» тенĕ пирки ниçта та кайса кĕреймесĕр пĕр-пĕр япала пулса выртать теççĕ. Акă Вăпăр пĕрре ниçта кайса кĕреймесĕр тăла варри пулса выртнă та, пурте шырама тапратса, ют тăларан палласа, ку Вăпăр пулмалла тесе çунан хăйă илчĕç те тăла татăкне ĕнтрĕç, тула кăларса утрĕç. Тепĕр кунне пĕлчĕçĕ: ялти Вăпăр карчăкăн хăрах ен пичĕ çуннă та, вырăнĕ çинче ахлатса, сывмарланса выртать тет. Ку Вăпăр карчăксен килне çĕвĕ çĕлеме çĕвĕç килчĕ, çĕвĕ ĕçлесе пĕтерсен çĕвĕç урăх киле тунтир касма каять. Вăпăр карчăк малтан тула тухрĕ те, йытă пулчĕ те çĕвĕçе хирĕç хаярланса, шăла йĕрсе çĕвĕçе çыртма тапратнă, çĕвĕç аршăнпала йытта пуçран çапнă, йытă йынăшса çĕре ӳксе юлнă, çĕвĕç каялла таврăниччен карчăк пушшех чирленĕ.

Çĕвĕç таврăннă та калать: «Карчăк, эсĕ йытă пулнине эпĕ пĕлтĕм, ытти çынсем çав карчăк Вăпăр пулать тенине илтнĕччĕ те, çавăнпа сана аршăнпа çапса вĕлермерĕм, вĕлерме хĕрхентĕм». Карчăк намăсран вăтанса, апла-капла, эпĕ Вăпăр пулма пĕлместĕп тесе туннă тет.

Вăпăр çынсене тăшман туса çӳреме сӳс тылли утланса каять пулать тата Уйăха çима каять, Уйăха çинине курсан пӳлеш йывăç туйипе Вăпăра

персен, Вăпăр Уйăха çимасăрах татăлса анать пулать, тата пӳлеш йывăç сенкĕ юппипе персе ӳкермесен выльăх-чĕрлĕхе йывăрлăх килет теççĕ. Вăпăра каякан çын мунча кĕмест тет, тата хул хушшинчи ӳт шăтăк пулать тет.

Вăпăра çӳрекен час ватăлса вилет тет, паçăр малтан каланă пек, нумай тытăнса хĕн-хура кайса вилет пулать.

Пирĕн чăваш халăхне мĕн сиен тумасть-ши ку Вăпăр, кăвас чĕресне кĕрсе чустана ытлашши йӳçĕтсе тăкать, çамрăк чĕчĕ пăрушне те пӳлеш йывăçĕ çакмасан чĕкĕрттерет, турăх савăчĕ çине тимĕр хумасан турăхне çиса тутине пĕтерет, алри ачине те хĕрес çумне пӳлеш йывăçĕ шăтарса çакмасан чĕкрене ертет, ыттине те нумай вăрттăн сăтăр тăвать теççĕ. Шухăшласан кулас килет ку Вăпăртан: çав таранччен темĕншĕн хĕн-хур курса çӳрет ку, питне те хуп-хура пулаччен çунтарать, ĕнтет, аршăнпа çаптарса хĕненине те чăтать, çӳлтен уйăх патĕнчен те ӳкет, çавах та Вăпăр пулмап урăх тесен те хăй ĕçне пăрахмасть теççĕ.

## 1092

Ку ĕç ĕлĕк-авал пулса иртнĕ. Пирĕн ялта пĕр карчăк Вăпăр пулса çынсене хĕн-асап кăтартса çӳренĕ. Ăна манăн асатте тĕрĕслесе пăхса ку карчăка ăса вĕрентме шут тытнă.

Пĕррехинче, каç пулсан, çур çĕр таврашĕнче асатте урама тухнă. Вăл хăйпе пĕрле вĕрен илсе тухнă. Тем чул хушши урамра тăнă вăл, паллă мар, урамваррипе пĕр урапа хăй тĕллĕнех куçса килнине курнă. Асатте ку урапа мĕнле урапа пулнине пĕлнĕ те çавăнтах ăрăмлама пуçланă (вăл хăй те ăрăмлама пĕлнĕ ĕнтĕ). Вара асатте урапа умне тухнă. Урапа ун тĕлне çитсе чарăннă. Асатте вара урапа кӳпчекĕ витĕр вĕрен тирнĕ. Хăй вара пӳрте кĕнĕ те çывăрма выртнă.

Кăвак çутă килнĕ. Асатте тăрса тумланнă та урама тухнă. Анчах çул варринче урапа мар, Вăпăр пулса çӳрекен карчăк йăваланса выртнă. Хăй пĕтĕмпех кăвакарса кайнă пулнă, сăмахĕсене те тĕплĕн ăнлантарайман.

— Эсĕ çынсене сахал мар хĕн-асап кăтартса çӳрерĕн. Эпĕ сана пĕр хутчен çеç ăса вĕрентес терĕм. Ӳлĕм çынсене хĕн-асап кăтартса çӳремес тесе сăмах парсан ирĕке яратăп, сăмах памасан кунтах асапланса вилсе кай, — тенĕ асатте карчăка.

Карчăк вара ирĕксĕрех асаттепе килĕшнĕ. Унтан асатте вĕрене илнĕ те пӳрте кĕнĕ. Карчăк тепĕр кун икерчĕ, тĕрлĕрен чиссем пĕçернĕ, эрех илнĕ те хăйне сывă хăварнă асаттене чаплă хăна тунă. Асатте киле ӳсĕрпе аран çех çитнĕ. Мухмăр чĕртме тесе асаттене тепĕр куна та пĕр пулштух эрех парса янă. Хăй вара çакăн хыççăн Вăпăр пулса çӳреме ĕмĕрлĕхех пăрахнă. Апла пулин те ку карчăк вилнĕ чух асапланса вилнĕ тет.

## 1093

Икĕ çĕвĕçĕ пĕр çын панче çĕв ĕçлеççĕ тет. Кил хуçи калать: «Мана, — тет, — кашнă каç Вăпăр пусать», — тет. Хăй çĕвĕçĕсем: «Пастай, уна тытатпăр», — терĕç тет. Каç пулчĕ тет, пĕр алăк панчи шăтăка анчах питĕрмесĕр хăварчĕçĕ тет, халь кил хуçисем пурте çывăрчĕçĕ тет. Ку икĕ çĕвĕç сыхлаççĕ. Хăй нумай тăрать-и, сахал тăрать-и, кил хуçине Вăпăр пусса йынăштара пуçларĕ тет. Хăй çĕвĕçĕ лаша йĕвен тытать те: «Чанкăр-

чанкăр, чур пултăр, шăтăк-çурăк чур пултăр, хура лаша пулах тăтăр», — тесе каларĕ тет. Хăй хура лаша пулса тăчĕ тет. Хура лаша пулса тăрсан йĕвен тăхăнтарчĕçĕ тет, хай лашана кăкараççĕ те, ирхине, кил хуçисем пурте тăрсан, тĕлĕнсе хытса карĕçĕ тет. Хай çавă кун пасар пулать тет. Хай лашана кӳлеççĕ те пасара каяççĕ, çул çинче лешне ну вĕтеççĕ, лаша епле каять, çапла каяççĕ тет. Лашаран кăпăк талса анакан пулчĕ тет, хай пасара çитсен кăкараççĕ пĕр çурт çумне. Хай çĕвĕçĕ аякран вăрттăн пăхса тăрать тет. Карчăк пычĕ тет те: «Эй, хĕрĕм, епле хăтăлăн кунтан?» — тесе макрать тет. Хай лашан куçĕнчен куççуль юхать тет, хай карчăк çавăрăнса кайрĕ тет. Хай çĕвĕçсем кил хуçисемпе пĕрле ларса тавраннаççĕ. Килне çитсен тăварчĕçĕ тет те, пĕр çĕвĕçĕ: «Йĕвенне хывас», — тесе калать тет, тепри: «Хывас мар», — тесе калать тет. Хай хывса ячĕçĕ тет те, лаша куçран çухалчĕ тет. Вара çавă кил хуçине нихçан та Вупăр пусмарĕ тет.

Вăл Вупăра çӳрекен çыннăн хул ай шăтăк пулать тет.

## 1094

Вупăр вăл каçсерен анчах çӳрет тет. Вăл çын çывăрнă чух ун çине улăхса выртать тет. Çын вара вилнĕ пекех ним йăшăлтатаймасăр выртать тет. Вăл пуринчен ытларах хĕрарăмсем çине выртать тет. Çав хĕрарăм пысăк хырăмлă пулсан Вупăр ун хырăмĕнчи ачине кăларса илсе каять тет. Хĕрарăм çакна нимĕн те сисмест тет. Çак ача каярахпа Вупăр пулать тет. Вупăра пăшалпа кăна пистерме пулать.

## 1095

Хăш çын вăпăрлă пулать теççĕ. Вăл çынна вилсе пытарсан кайран унăн ӳчĕ çĕрмест теççĕ. Вăл çыннăн пытарнă тăпри çинче шăтăк пулать теççĕ. Çулла вара çумăр çумасан: «Çавсем чарчĕçĕ пулĕ», — тесе вĕсен шăтăкĕсене кайса шыв яраççĕ. Унта хĕрарăмсем каяççĕ. Çав çынсене, хăшне-хăшне, çĕрле кайса чавса кăлараççĕ те урăх çĕре, лачакана, кайса пытараççĕ.

## 1096

Пирĕн ялта старикпе карчăк пулнă. Вĕсем ытлах килĕштермен пулмалла. Старикки виличчен арăмне хушса хăварнă. Вăл вилсен карчăкăн 40 кун хушши тĕкĕленсе питĕрĕнсе выртмалла пулнă. Старик вилсен карчăк кашни каç тĕкĕленсе выртать. Çапла пĕр каçхине пӳртĕн тăвата кĕтессине те çутă ӳкет. Малтан пĕр кĕтессине, кайран хирĕç кĕтесе, кайран ытти кĕтессене. Кайран мăй патĕнче пуснăн туйăннă, сывлама май пулман.

Çапла ир еннелле унăн мăйĕнче хĕрлĕ лаптăк пулнă. Ăна Лупăр пуснă теççĕ.

## 1097

Пирĕн асанне ача çуратнă. Ачи вилнĕ. Кăкăрĕсем хытă карăнса, шыçăнса кайнă. Кăкăр карăнса кайнипе çывăримастăп тет. Весерле* выртнă та ахлатса выртатăп кăмака çинче тет. Урайĕнчен темскер тӳп-тӳп чупса пычĕ те тĕпĕрт сиксе хăпарчĕ тет кăмака çине. Тӳрех ман кăкăр çине хĕрлĕ кушак пулса ларчĕ тет.

---

* Месерле.

Çав вăхăтрах хам хытса лартăм. Кушаккине тĕкме хăтланап — тапранимастăп, çапма хăтланап — çитимастăп, çыртма хăтланап — çыртимастăп. Кайран вăл куçран çĕтрĕ. Хама хытарса лартни кайран иртсе кайрĕ.

Тепĕр кун пĕр карчăка каласа патăм. «Мана çĕркаç çавăн пек пулчĕ», — терĕм те, вăл каларĕ: «Сан ачу кăкăр сĕчĕ çиасшăн, эс ăна шурă турпас çине су та таса юр çине анкартине пăрахса пар. Пăрахса панă чухне çакăн пек кала: «Сана суса паратăп, манран уйрăл». Чăнах та, ун хыççăн Вупăр урăх пусмарĕ тет.

## 1098

Вупăр ватă карчăках пулат тет. Çавă ватă карчăк Вупăр пулсан Уйăха çисе ярат тет те вара çынна пусма каят тет. Çав Вупăр Уйăха çинине çын курсан, чŷрече çине кĕл сапсанах Уйăха çиме пăрахат тет. Вупăр çынна пуснă чухне çын чисти вилнĕ пекех пулат тет, вăхăт çитмесĕр темĕн чухлĕ тăратсан та тăмас тет. Вупăр çынна пусма пынă чухне, çын çывăрсан, кушак пулса малти чŷречерен кĕрет тет. Пĕрре çав Вупăра çын çывăрсан малти чŷречене уçса сыхланă тет. Сыхласан-сыхласан хай Вупăр кушак пулса пŷрте кĕрех кайрĕ тет. Хай Вупăр кĕрсенех чŷречене хупрĕç тет те хăй çутса шыра пуçларĕç тет. Çав Вупăр тану* пукан пулса выртнă тет. Пукана çапрĕç тет те, минтер пулса выртрĕ тет; минтере хĕнесен каллах кушак пулчĕ тет; кушака хĕнесен ватă карчăк пулчĕ тет; вара питне ниепле те кăтартмас тет. Ăна вара тула кăларса ярсан хайхине йытă ну пĕсĕрлентере пуçларĕ тет! Хай Вупăр кушак пулчĕ тет те куçран прех çухалчĕ тет.

## 1099

Чăвашсем Вупăра сысна пек теççĕ, пŷрнисем çыннăн пек. Вăл каç пулсан, çынсем çывăрма выртсан, пĕр-пĕр çын патне пырса унăн çине улăхса выртать. Çапла Вупăр выртнине чăвашсем «Вупăр пусни» теççĕ. Вупăр пуснă чух пŷрнисене çын çăварне чиксе ярать, вара çав çыннăн ни кăçкăрма сасси пĕтет, ни сиккеленмелле мар пулать.

## 1100

Мана атте каласа панăччĕ кун çинчен. Атте больницăра выртап тет операци хыççăн.

Çапла темскер хам çине кушак евĕр япала улăхнине туятăп тет. Хăй мăр-мăр тăвать тет. Сывлăш пŷлĕнсе-пŷлĕнсе пычĕ тет. Çав вăхăтра пŷлĕме такам кĕрсе света çутрĕ тет те, кушак таçта кайса çухалчĕ тет.

## 1101

Пĕр ача пŷртре çывăрнă тет. Пŷртĕнче ашшĕ-амăшĕ, шăллĕ тата вăл пулнă тет. Пурте çывăрма выртрĕç тет. Çур çĕр иртсен ачи пĕри вăранчĕ тет: «Вăн, кушак, кушак, тытăр, тытăр!», — тет. Ку вăл Вупăр пулнă тет. Ачана пуснă тет. Măйĕнчен тытнă тет.

* Давно — тахçанах.

## 1102

Вупăр каçхине çынна ним систермесĕр пусасшăн тет. Анчах ăна сисеççĕ. Тепĕр чухне Вупăр çын чĕлхипе калаçать тет. Акă пĕррехинче пĕр каччă аслăк тăрне çывăрма выртнă тет. Каçхине пĕр ĕмĕлке пусма тăрăх çын пек пусса хăпарать тет. Хăпарса çитрĕ тет те качча уринчен ярса тытса пусма тапратрĕ тет. Лешĕ пĕррех тапса ячĕ тет те, Вупăр вара аялалла персе анчĕ тет.

— Мĕншĕн мана капла тапса ятăн, сан тепĕр эрнерен пурпĕрех салтака каймалла, — тенĕ тет çын сассипех.

Чăнах та, тепĕр эрнерен каччăна салтака илсе кайрĕç тет.

Вупăра хăратас тесен кача пўрнине çыртмалла тет, вара вăл çынна пусаймасть тет.

## 1103

Ку ĕç эпĕ 15—16-ра чухне пулса иртрĕ. Ман аннене çынсем Вăпăр пулса çўрет тетчĕç. Вара эпĕ пĕррехинче аннене сыхлама шут тытрăм. Каç пулса çитрĕ. Анне кравать çине, эпĕ кăмака çине выртрăмăр. Хам пĕрре те çывăрмастăп, кăмака çинчен кравать çине пăхса выртатăп. Тем чул вăхăт иртсен (пĕр 10 сехетсенче пулĕ) кравать çинчен шап-шурă тумланнă карчăк анчĕ те алăка уçсах тулалла тухса кайрĕ. Вăл тухса кайсан кăмака çинчен анатăп та кравать патне пырса пăхатăп, унта анне ним пулман пекех тутлă ыйхăпа çывăрса выртать. Эпĕ ăна ыйхăран вăратас тесе чĕне пуçларăм, анчах ниепле те вăратаймарăм. Унтан силлеме тытăнтăм, çапах вăранмасть, хăй йывăç пек шак хытса çитнĕ. Мĕн пулнă-ха ку аннене? Вăл ялан пĕрре чĕнсенех вăранатчĕ-çке. Шалкăш* çапман пулĕ те тесе шутлатăп. Хамăн та çан-çурăм чĕтреме пуçларĕ. Эпĕ аннене сыхлануллăн йăтса ури çине тăратрăм, анчах ури çинче тăраймасть. Эпĕ ăна вилнĕ пулĕ тесе каялла кравать çине вырттартăм та хам каллех кăмака çине хăпарса выртрăм. Аннене хĕрхеннипе куçран куççуль тухма пуçларĕ. Хам çавах куçа кравать çинче выртакан анне çинчен илместĕп.

Çур çĕр автанĕ авăтса ячĕ. Каллех пўрт алăкĕ уçăлчĕ те, паçăр тухса кайнă шап-шурă тумланнă карчăк кĕчĕ. Кĕрсенех вăл кравать çине хăпарса кайса куçран çухалчĕ. Кун хыççăн эпĕ каяллах аннене чĕнтĕм.

— Анне, анне, эсĕ çывăратăн-и?

— Питĕ те тутлă ыйхăпа çывăратăп, — ответлет мана анне пĕрре чĕнсенех. Вара эпĕ ăна кĕçĕр пулса иртнĕ ĕç çинчен пĕтĕмпех каласа патăм та вăл ăçта çўренине ыйтса пĕлме пуçларăм.

— Эсĕ эпĕ ăçта çўренипе мĕн тăватăн? Пит пĕлессĕвех килет пулсан ыран каç хăвах курăн, — ответлерĕ мана анне. Ку сăмахсене илтсен ман ăша шик кĕчĕ. Апла пулсан та манăн анне мĕн туса çўренине пĕлесех килет. Тепĕр каç пулчĕ. Ку каç та яланхи пекех эпĕ кăмака çине, анне кравать çине выртрăмăр. Выртсан, нумай тăмасăрах, эпĕ çывăрса та кайманччĕ-ха, манăн алă-урасем йывăрланса çитрĕç: вĕсене хускатма пăхатăп, анчах вĕсем хускалмаççĕ. Кăшкăрма тăрăшатăп, сассăм тухмасть. Малалла нимĕн те пĕлместĕп: те çывăрса кайнă, те тăна çухатнă. Эпĕ вăраннă тĕле автансем авăтрĕç. (Çур çĕр автанĕ пулас. Иртнĕ каç та анне çур çĕр автанĕсем авăтсан таврăнчĕ.) Вăраннă хыççăн манăн çан-çурăм, алă-урасем, пуç

---

* Паралич, шалкăм.

ыратрĕ. Вĕрилĕх те пĕр 40 градуса таран ӳссе кайрĕ. Эпĕ ирччен хĕн-асап курса выртрăм. Ирхине ирех анне ман пата пычĕ те çапла каларĕ:

— Ну, ачам, халĕ эпĕ ăста çӳренине пĕлетĕн-и?

Мĕн тăвас? Вара эпĕ ирĕксĕрех пĕлтĕм терĕм.

— Пĕлен пулсан ӳлĕм ăста çӳренине ан ыйт. Ыйтсан тата йывăртарах пулĕ, — терĕ мана анне.

Кун хыççăн вара эпĕ икĕ эрне сыв мар выртрăм. Эпĕ вара халăх калаçни пĕтĕмпех тĕрĕс иккенне пĕлтĕм. Малашне аннепе хирĕçме те хăракан пултăм.

## 1104

Пĕр карчăкпа старик порăннă тет. Вĕсен Ваçли ятлă ывăл полнă тет. Анчах та Ваçли вон çич çола çитсен ашшĕ вилсе каять. Амăшĕ ватă, çавăнпа та Ваçли авланма шот тытнă. Вăл ялти илемлĕ те ĕçчен Мархвана качча илет, анчах та амăшĕ кинне пач та йоратман. Ялан мокăр та мокăр, мокăр та мокăр.

Порăнсан-порăнсан Ваçлипе Мархван хĕр çоралать. Топпер карчăк пошшĕ тархать, мĕншĕн тесен ачи ывăл мар-çке. А ĕлĕк хĕрсене çĕр паман, хăварах пĕлетĕр. Çак карчăк кинне вĕлерме, ывăл çоратакан кин топма шотлать.

Пĕррехинче, каç полсан, кинне ачи-мĕнĕпех амăшĕсем патне вăйпах хăнана ярать. Кинĕн каяс килмест, теме сиснĕ пекех чĕри тапать, анчах итлемеллех çав паян, ĕлĕк ваттисенчен иртмен те, вот кинĕ ачипе тохса кайрĕ топпер.

Ко карчăк кинне кăларса ячĕ, ывăлĕ çывăрса кайрĕ.

Ывăлĕ çывăрса кайсассăнах çӳçне-пуçне яр пачĕ, комака çине вир акрĕ. Вирĕ шăтрĕ, ӳсрĕ, çапрĕ те çор çĕрччен пăт пĕçерсе те çирĕ. Унтан Вопăр карчăк полчĕ тăчĕ. Он тата шăллă тылă полнă. Отланса ларнă, çӳçне-поçне яра панă, кинĕпе ачине хăвалать çак, хăй çапла йорласа пырать:

Сик-сик, тыллăм, сик, тыллăм,
Кинпе ачине çимелле то, тыллăм.

Ах хăвалать кинĕ лашине, ах хăвалать. Хăй çоралнă яла çитсе кĕрет, пиччĕшĕн алăкне шаккать, çĕмĕрет, анчах лешсем уçмаççĕ.

Карчăк çитет те кинĕпе ачине çисе ярать, пыршисене аслăк патне копалать.

Ирхине пиччĕшĕ тохать те темле пыршăсем выртнине корать. Вăл мĕн пыршине пĕлмен çав. Пиччĕшĕ топпер çак пыршăсене типме карать. Пыршисене карнă чох вĕсем çапла йорласа яраççĕ:

Эх, пиччеçĕм, пиччеçĕм,
Тапрăм-тапрăм, уçмарăн.
Эх, инкеçĕм, инкеçĕм,
Çĕмĕрсе те кĕртмерĕн,
Икĕ чуна каттартăр.

Пиччĕшĕ тинех ко кам полнине ăнланса илет, анчах кам вĕлернине пĕлеймест.

## 1105

Пĕр чăваш салтака кайсан хваттер тăма пĕр старикпа карчăк патне кĕнĕ тет. Çакă çав старикпа карчăк панча пайтах вăхăт пурăнчĕ тет. Пурăнкаласан-мĕн тусан вăл салтак асăрха пуçларĕ тет. Çак стариккин карчăкĕ патне, упăшки çук чухне, пĕр пĕве кĕнĕ хĕр пыра-пыра тем пăшăлтатса калаçа-калаçа каять тет. Салтак хĕр пынине-кайнине хытăрах асăрха пуçларĕ тет. Салтак, вăл пырсассăнах асăрхаканскер, часрах хăйĕн валли пӳрт алăк тăпăлси патне тунă шăтăк патне пырса шăтăкран пӳртелле пăхрĕ тет. Пăхсанах курчĕ карĕ тет — карчăк хĕре çарамаслатарса тăратнă. Унччен те пулмасть, карчăк тĕпеле кайса кăмака патĕнчен милке илчĕ те çак çарамас тăракан хĕре кăмака милкипе тем-тем мăрласа тĕкрĕ тет. Кăшт тĕксенех çав çарамасланнă хĕр пӳрт трупи витĕр тухрĕ карĕ тет. Ун хыççăн вăл карчăк хăй те хăйне милкипе тĕксе çав трупа витĕр тухса карĕ тет. Салтак çакна курсан шалт тĕлĕнсе хытса тăчĕ тет. Тăрсан-тăрсан салтак мĕн тăвас-ши кусем каялла киличчен тесе шухăшла пуçларĕ тет. Унтан пӳрте кĕрсе, карчăк хĕрпе хăйне тĕкнĕ милкене илсе салтак сĕтел çинче ларакан чашкăпа кашăксене тĕкрĕ тет те, лешсем çавăнтах пӳрт трупи витĕр ханкăртатса тухса карĕç тет. Кун хыççăн салтак ним тума аптраса хай трупа витĕр кайнă хĕрĕнне кĕпине (сарапан) илсе урăх çĕре кайса пытарчĕ тет. Кăшт тăрсан карчăкпа хĕр иккĕш те трупа витĕр пырса кĕчĕç тет. Хăйсем иккĕшĕ те йĕп-йĕпе, ывăннă тет питĕ хытă. Тапратрĕç тет сараппанĕсене шырама: карчăкăн пур, хĕрĕн çук тет. Унтан тупимасăр салтака тапăнчĕç тет, нумай тархасласан салтак хĕре сараппанне пачĕ тет. Акă пĕр каç иртет, ик каç иртет, виç каç салтак нимле те çывăримасть, выртрĕ-выртрĕ шухăшласа та, анчах çывăрас тесе тепĕр енне çаврăнса выртма тапратрĕ тет те, çавăнтах пӳртрен алăк уçса тухса хай старикĕн карчăкĕ тапратрĕ тет куна хытарма. Çав каçран пуçласа салтака карчăкпа хĕр кашни каç пилĕкшер те ултшар хытара-хытара пăрахççĕ тет. Салтак аптраса карчăк упăшкине каларĕ тет. Вара упăшки çакна пĕлсен çилленсе хăй карчăкне килти çынна ма Вупăр пулса пусан тесе питĕ хытă çаптарчĕ тет. Çак çаптарнă хыççăн карчăкпа хĕр старикки çук чухне салтака питĕ хытă тархасларĕç тет, никама та ан кала, уншăн сана эпир хура-шурă тирпейлесе парса пурăнăпăр тесе. Салтак вĕсенчен ма апла хăтланма тапратрăр эсир тесе ыйтнă тет те, лешсем уна пире турă хушрĕ çав тесе макăра-макăра каласа пачĕç тет.

## 1106

Вупăр çынна çывăрнă чух пусать тет. Çынна темле хытарса лартать тет. Хăй вара кушак евĕр курăнать тет. Хăрах кача пӳрнипе сиктерсен Вупăр пусни сирĕлсе каять тет. Анчах та кача пӳрнине ниçтан та сиктерме май килмест тет.

Пирĕн ялти пĕр çынна Вупăр пусма тытăннă тет. Вара вăл кача пӳрнине сиктерсе вăранса кайнă тет те урайĕнче выртакан пурçăн тутăра курнă тет. Вăл тытнă та çав тутăран пĕр вĕçне çунтарса янă. Вара тепĕр кунне ялта пĕр ватă карчăкăн пичĕн хăрах айкки çунса кайнă тет.

## 1107

Вупăр пуснă чух шăм-шак хытать тет. Çын ним хускалайми пулать, тăнсăр та пулма пултарать тет.

Пĕр çынна кашни каç тенĕ пекех Вупăр пусма пуçланă тет. Вăл çывăрса

кайсан килсе пусать тет. Çак çынни çывăрса каяйман пулнă тет. Вупăр килчĕ тет, пусма пуçларĕ тет. Малтан ури пӳрнисене тет, кайран урине, кăштахран аллисене те Вупăр пусать тет. Çак çынни сиксе тăнă тет те пĕтĕм шăтăк-çурăксене хĕрес хывса тухнă тет. Вупăр кăмака хыçне кăçатă пулса выртнă тет. Çак çын кунта манăн нимĕнле кăçатă та пулмалла мар-ха тесе тытăнчĕ тет çакна хĕнеме, патакпах лайăх хĕнерĕ тет, хăй те йĕп-йĕпе пулнă тет. Кайран çак кăçатта ĕнтсе ячĕ тет вун иккĕллĕ лампа çине тытса. Кайран тула кăларса пăрахрĕ тет. Кайран çак Вупăр пулнă çыннине палланă тет, пичĕ-куçĕ йăлт çунса-ĕнсе кайнă тет хăйĕн, пăхма та срам тет.

Нумай пурăнайман тет çакăн хыççăн, вилнĕ тет. Çавă кирлĕ пулнă ăна. Пĕрре пуснă, иккĕ пуснă, виççĕмĕшĕнче вăл вит вĕлерме те пултарнă. Вупăр курайман çынсене пусать тет, хăйсем юратман çынсене эппин.

## 1108

Пĕр çынна кашни каç Вупăр пусма пуçларĕ тет. Пĕр каçхине, çак çын çывăрса кайма пуçласан, Вупăр килчĕ тет те пусма пуçларĕ тет. Малтан пӳрнисем, унтан аллисем те хытма, тапратмалла мар пулма пуçларĕç тет. Çак çын çынсем Вупăр пусма пуçласассăн, шăтăк-çурăксене хĕрес палли хурса çӳресен Вупăр кирек мĕн пулса выртать тенине илтнĕ тет. Вара çын: «Чим-ха, çапла туса пăхам-ха», — тесе каларĕ тет те Вупăр пĕтĕм кĕлеткине хытарса лартиччен часрах тăрса пӳртри шăтăк-çурăксене пурне те хĕрес хурса çаврăнчĕ тет.

Унтан хăйă çутрĕ тет те: «Мĕн пур-ши кунта?» — тесе урайне пăхкалама пуçларĕ тет. Пăхкаланă çĕрте пĕр хура тăла варри курах кайрĕ тет. Вара вăл тăла варрине: «А! Эсĕ кунта-и?» — тесе илчĕ тет тет хăйă çине тытса ĕнтерчĕ тет, вара тула пăрахрĕ тет.

Тепĕр кунне, çынсем каланă пек, пуринчен малтан шыв ăсма анакан çынна курас тесе çак çын ирех тăчĕ тет те шыв ăсма кайрĕ тет.

Шыв ăсма пĕр кĕçĕн çын (çĕнĕ çын) анчĕ тет; хăйĕн тути хуп-хура çунса кайнă тет. Çапла вара çав çын Вупăр кам пулнине пĕлчĕ тет. Унтан кайран ăна Вупăр пусма пăрахрĕ тет.

## 1109

Ватăлнă, тĕшмĕш туса пурăннă çынсем час-часах Вăпăр пулма пултараççĕ тет. Пĕрре çавăн пек каç, мунча кĕрсе тухсан, пĕр карчăк çĕре выртса йăванчĕ тет те йытă пулса карта урлă ялт анчах каçса карĕ тет вăпăра. Çав Вăпăр пĕр çын патне чӳречерен кушак пулса кĕчĕ тет. Çак кушак, васка, чиперех пĕр хуп-хура этем кĕлетки пулса, çав çыннăн арăмĕ пуçĕ çине ларса кăçкăртмах тапратрĕ тет. Çын часрах вырăн çинчен сиксе анса кантăксене, алăксене питĕрсе лартрĕ тет. Вăпăр çук та пулчĕ тет. Ку çыннăн арăмĕ тăчĕ тет те, кăсем, Вăпăр тăла варри пулакан-ха тесе кашни тăлаваррине çунтара-çунтара пăхаççĕ тет. Сак айĕнче пĕр тăла татăкки курах кайрĕç тет. Çакна тивретсе пăхрĕç тет те, тăла варринчен кушак пулчĕ тăчĕ тет. Хай кушака: «Э-э, алла кĕтĕн-и?» — тесе çап-çара ĕнтсе ячĕç тет те тула витĕрех кăларса утрĕç тет. Тепĕр кунне çак çын Вăпăр пулакан карчăк патне карĕ тет те, карчăкĕ пĕтĕмпе хуп-хура çунса кайнă тет, куна кăшт курсассăнах мана пĕтерме килчĕ тесе кăçкăрса ячĕ тет.

## 1110

Вăпăр пуснине чăвашсем ют çын сывлăшĕ килсе юна ĕмет теççĕ. Çак юна ĕçекен усал сывлăша тытас тесен: «Шăтăк, шăхăр, чăр!» — тесе каламалла, вара вăл тухса кайман пирки е йĕке пулса минтер айне выртать, е çăмха пулать. Çак япалана çунтарсассăн вара ирхине пĕр-пĕр çын вилет теççĕ.

## 1111

Пĕрре мана çапла Вăпăр пуснă. Вăрантăм, пăхатăп: уйăх çути çап-çутă. Ман кăкăр çине йывăр япалапа пусарса хунă. Нумай-и, сахал-и, питĕрленсе выртсан-выртсан Вăпăрĕ тăчĕ. Вăл тăрса кайсанах вырăн çинчен сиксе тăрса лартăм та: «Шăтăк, шăхăр, чăр!» — терĕм те, тĕселле хĕреслерĕм те вырăн çинчен хăвăртрах антăм, чӳрече çинчен çĕçĕ илсе алăк янаххи çине çĕççе тăрăнтартăм та шыра пуçларăм. Шырарăм-шырарăм, пăхман çĕр юлмарĕ. Çĕççе илме тесе тытăнтăм та кĕлте çыххи çĕççе тăхăнса выртнине курах кайрăм. Хăвăртрах кĕлте çыххине кăмака умне хурса вут тивертсе: «Ырă вут амăш, мана муритлекене — çак кĕлте çыххине — çунтарса яр», — тесе çунтарса ятăм та, пĕр-ик кунтан вăрăм Хветук вилчĕ. Çавă вилсен тин мана Вăпăр пусми пулчĕ.

## 1112

Çĕрле Вупăр пусат. Вупăр пуссан качи пӳрнине сиккелеттермелле, ул вара каят. Вупăр Хĕвеле, Уйăха çиет теççĕ; ун чухне сеник (сенĕк) юппине çурмалла. Вупăр вара каят.

Уйăх кĕш уяртса пăхнă чухнех çĕтсен Уйăха Вупăр çиет пулать вара.

Вăл хăйне кам çиллентерет, ăна часах ерсе пусма тапратать тет. Тата вăл уйăх çуттинче хăй тарса хăтăлаймасан Уйăха çисе ярать тет те тĕттĕм çĕрте çиччас куçран çухалать тет. Вăл Уйăха çисе ярсан çынна питĕ çыпăçать тет, пĕр те пĕр çынна çаклансассăн çын вара урăлаймасть тет: ăна çаплах пусса начарлатса вĕлерет тет. Çынна пусни ăна хăй упăшкипе пурăннă пекех туйăнать тет.

Вупăр вăл ак мĕнле: унăн хул айĕ пĕтĕмпех витрех шăтăк; чăвашсем унран пит хăраççĕ, особенно пĕчĕккĕрех ачасем; вăл Вупăр тата Уйăха çиме пултарать теççĕ чăвашсем. Çав Вупăр Уйăха çиме улăхнă чухне шур пуç юççи (на лутошку) утланса: «Ну-ну-ну-ну-ну-ну!» — тесе улăхать теççĕ; вăхăтĕнче уйăха çиять теççĕ.

Чăвашсем хĕлле пулсан çĕрле нумай лараççĕ. Хĕрарăмсем кĕнчеле аварласа лараççĕ, арçынсем тĕрлĕ ĕç тăваççĕ: е çăпата тăваççĕ, е çĕвĕ çĕлеççĕ. Çапла пĕр çуртра çĕрле ĕçлесе ларнă тет, пĕр карчăк анчах çывăрать тет. Ларсан-ларсан ку карчăк тапратрĕ тет мĕкĕрме. Пурте шартах сикрĕç тет. Нумай та мĕкĕрмерĕ тет, вăранчĕ тет. «Ара, мĕн пулчĕ сана?» — тесе ыйтрĕç тет ларакансем. «Пĕр мăнтăр, пысăк арăм пычĕ пек, ман çия упаленсе выртрĕ пек», — тесе каларĕ тет. Пĕри вара лараканнисенчен: «Шăтăк шăхăрчăр», — тесе каларĕ тет. Апла каласан Вупăр тухаймасть тет. Çавăнпа пурте шыра пуçларĕç тет. Шырасан-шырасан пĕри курах карĕ тет: кăмакара кушак пулнă тет те кĕтесре ларать тет. Кушака тытрĕç тет те çĕçĕ илсе, пусатпăр тесе камне калама хушрĕç тет. Кушак каламасть тет. Вара пусма тăрсан тин каланă

тет. Кӳршĕ арăмĕ пулчĕ тет те: «Ан пусăр», — тесе йăлăна пуçларĕ тет. Вара вăл арăма шăрса яраччен хĕнерĕç тет. Темĕн чухлĕ укçа илчĕç тет. Çавăнтан кайран тин пăрахрĕ тет кӳршĕ арăмĕ Вупăр пулса çӳреме.

## 1113

Пĕр арăма темле, те хăнана çав, вупăрлă карчăк хăвалана. Ку арăм пĕччен кăна урапапа, лашине тилкепепе хăваласа, çаврăна-çаврăна пăхса пырат тет те юрлат: «Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам, часрах киле çит, лашам!» Вупăрлă карчăкĕ кантăр тылли çине утланса, сиктерсе хăваласа пырат тет çак арăма. Хай çапла каласа пырат тет: «Сик-сик, тыллăм, сик, тыллăм! Сикетĕп те çитетĕп, çак арăм пуçне çиетĕп».

## 1114

Вăпăр вăл этем юнне ĕмнипе сырлахмасть, хутра-ситре вăл Хĕвелпе Уйăх патне çитсе вĕсене çиет, тĕттĕмлентерет.

Пĕр ялта пĕр Вăпăр карчăк, унпа пĕрле унăн хĕрĕ тата кĕрӳшĕ пуранна. Пĕр каçпа тулли уйăх çап-çутă çутатнă. Вăпăр карчăк хĕрĕпе кĕрӳшне каланă: «Кĕçĕр Уйăх тулса çитет, эпир ăна çиме кайăпăр», — тенĕ.

Вăхăт çитсен Вăпăр карчăк, хĕрĕ тата кĕрӳшĕ кăмака çинче вир акнă. Унтан пуччушши патаксем илсе вĕсем çине утланса ларнă. Ун хыççăн кăмака мăрйи витĕр тухса Уйăх патне хăпарса кайнă. Кĕç Уйăх патне çитсе ăна çиме тытăннă. Чăнах та, Уйăх çаврашки пĕр аяккинчен катăлса пĕчĕкленме пуçланă, пĕчĕкленсех пырса юлашкинчен пĕтсех ларнă. Çутă Уйăх çаврашки пулнă çĕрте нимĕн те юлман: тĕттĕм пĕлĕт тӳпи çеç пулнă.

Çĕр çинче этемсем тата урăх чĕр чунсем Турра йăлăннă: «Турă, Вăпăра чарах, çутă партарах: çутăсăр çĕрле çӳреме хăрушă», тенĕ. Турă вăпăрсене каланă: «Уйăх çутине каялла панă пултăр!» — тенĕ. Вăпăр карчăкпа унăн хĕрĕн тата кĕрӳшĕн Уйăх çутине Уйăха каялла памалла пулнă. Уйăхăн пĕр хĕрринче çутă çурла евĕрлĕн куранна, унтан вăл ӳссе пырса Уйăх çаврашкине витсе илнĕ. Этемсемпе урăх чĕр чунсем савăнса юрла пуçланă. Вупăр карчăка тата унăн хĕрĕпе кĕрӳшне Турă хушнипе пирĕштисем уйăх çинчен хăваланă. Вĕсем пучушши патаксем çине утланса ĕлкĕреймен, Уйăх çинчен шуса анса çĕр çинчи пĕр тинĕсе ӳкнĕ.

## 1115

Пĕр таçта кайнă тата таврăнакан çын çулпа пынă çĕрте пĕр пӳрте çитсе тăнă. Каç пулса килнĕ пирки кĕрсе выртма шут тытрĕ.

Кĕчĕ... Пӳртре тăвата çын. Тапратрĕç тăваттăшĕ те йывăç касма, тем касаççĕ. «Мĕн касаççĕ-ши кусем?» — тесе шухăшлать хай таçта кайса таврăнакан çын. Тем касса пĕтерчĕç те, пĕри майлаштарса пĕчĕк ача валли сухапуç туса хучĕ. Сухапуç туса пĕтерсенех хăпарчĕç кăмака çине, сухалама тытăнчĕç. «Суха тумалла выляççĕ-и-мĕн?» — тесе шухăшлать пăхса ларакан, таçта кайнăскер.

Суха туса пăри акрĕç, сӳрелерĕç. Пăри шăтрĕ, çитĕнчĕ, тулса çитрĕ, пĕр виç сахатран вырчĕç, çапрĕç кăмака çинчех. Кĕрпе туса пăтă пĕçерчĕç.

Ку çын тĕлĕнсе кайрĕ. «Ĕлĕк маçак юмахра усалсем пĕр каçра вăрман çитĕнтерчĕç титчĕ, чăнах-иç», — тесе шухăшларĕ.

Пăтă пиççен ларчĕç тăваттăн пăтă çыма. Çыса тăранчĕç те: «Лар, пăтă çыма, эс те пирĕн çын пул», — терĕç.

Ку таçта кайнă çыннăн хырăмĕ выçнăччĕ те, ларчĕ пătта çыма: «Мĕнле, тутлă-ши ку пăтă?» — тесе çыма пуçларĕ. Пăтта çыса яримарĕ. Тухрĕ тăранса. Аран сывлать мехлесе. Хăпарса кайрĕç кăмака çине, шанкăртаттарма тапратрĕç. Кĕç тем патак вĕçĕ курăнма пуçларĕ. «Мана валли пулĕ ку», — терĕ аялтан, таçта каяканскер.

Трупа уçрĕ пĕри, утланса ларчĕ чĕлхеллĕ пушăт чӳччӳ çине. Унтан ыттисем.

— Атя эсĕ те, — терĕç.

— Кайса пăхас, ăшта каяç? — тесе кăмака çине хăпарчĕ ку çын та.

Тупса пачĕç ташта кайнă çынна пушăт чӳччи, пушăт чӳччийĕ çинче пушăт чĕлхехĕ пур. Ыттисем утланнă пек утланса ларчĕ те пăхса ларать.

— Эсĕ, — терĕ пĕри, валтан утланни, — «ну! ну!» тесе пыр, «тпру» тесе ан кала, вара пуçа çыян, халĕ Уйăх çыма каятпăр, — терĕ хыттăн.

Тр-р-р! чĕтресе илчĕ таçта кайнăскер хăраса.

— Но! — терĕ малтан утланни, унтан кайлах тапранса каяйман пирки: — Но-но! — терĕ те, чĕлхех пушăтран тытса, шат! тутарчĕ.

Тапранса кайса трупаран тухса кайрĕ, унтан ыттисем, юлашкинчен таçта кайнă, таçтан таврăнакан çын тухрĕ.

Пурте:

— Но-но! — тесе Уйăх еннелле пыраççĕ. Уйăх тарнăн туйăнать. Таçта кайнă çын ӳкме тапратса:

— Тпру! — терĕ. Пушăт чут чарăнчĕ те, таçтан таврăнакан çын ампар çине, çемçе çĕре, улăм çине ӳкрĕ.

Ыттисем карта юпи тăрне е çул çине ӳксе, хулпуççи пăрăнса е ура шăннисем сиксе тухрĕç. Хăшĕ-хăшĕ вилчĕç, таçта кайнăскер вилмерĕ.

— Кусем вупăрсем пулнă-иç, — терĕ. — Уйăха Вупăр çият титчĕç, куçăнах куртăм ку вупăрсене, — тесе шухăшласа ир çинче ташта карĕ хăй çулĕпе.

— Валтан «тпру!» тесе ӳкесрен тата «Уйăх çыма» каятпăр тесен хăраса вилсе кайнă. Ир çинче хăрани таçта карĕ.

## 1116

Пирĕн ялти чăвашсем каçхине уйăх курăнми пулсан Уйăха Вупăр çиет теççĕ. Вупăрĕ Уйăха çиме тĕпне касман сӳсе илнĕ çăка йывăççи тăрăх улăхать теççĕ. Вара ун пек чухне Уйăха Вупăр ан çитĕр тесе уйăха хирĕç вутлă кĕлпе авăсаççĕ. Е тата пилеш йывăççинчен тунă сенĕк юпписене уйăрса Уйăх еннелле ывăтсан Вупăрĕ Уйăх çинчен çĕре персе ӳкет теççĕ.

Вупăрĕ хăй хĕрарăмран пулнă теççĕ. Çав хĕрарăма ашшĕ-амăшĕ ылханса Усал (Вупăр) пулса кайнă теççĕ.

# Вупкăн

## 1117

Вупкăн вăл çыннăн пурнăçне пĕтерекен усал теççĕ. Çапла вара пиччĕшпе шăллĕ пурăннă теççĕ. Пиччĕшĕ пуян, шăллĕ начар пулнă тит, пурăнсан-пурăнсан çавă начар шăллĕ ыйткалама кайма тапратнă тит те

пӳрте пĕр сасă: «Ан кай-ха, эпĕ те пыратăп, ура сырса пĕтерем», — тесе калать тит. Вара çын пĕтĕмпе хăраса кайса: «Эсĕ кам мана курăнман çын, мĕн ятлă, тух кунта», — терĕ тит. Вара лешĕ: «Эпĕ Вупкăн, санăн пурнăçна çисе пурăнатăп, халĕ эсĕ кайсан манăн мĕнле пурăнас, мана та илсе кай», — тесе калать тит. Вара çын: «Тух айта», — тесе чĕнет тит. Вара, лешĕ тухсан, ку çын ăна тытса упа шăтăкне ярса тăрне юпа лартнă тит, вара çавă çын туххăм пуйса карĕ тит. Хайхи пиччĕшĕ ку епле пуйса карĕ тесе шутлать тит, вара шăллĕнчен ыйтать: «Эсĕ епле пуйрăн?» — тесе. Вара лешĕ йĕркипе каласа кăтартрĕ тит. Хайхи пиччĕшĕ юпана кăларса Вупкăна хăтарчĕ тит. Вупкăн чутах вилмен тит. Как кăларсанах вара хайхи Вупкăнĕ: «Ну сана спаçипă мана кăларнăшăн, халĕ санран юлмастăп», — терĕ тит. Вара шăллĕ пуйса, пиччĕшĕ начарланса карĕ тит. Вара уна юмăç-вĕрӳçĕ хуса кăларать тиççĕ.

## 1118

Пĕр пуянпа начар пурăнаççĕ, начар темскер те туса: ĕçленĕ, сут-ил тунă, тырă-пулă акнă, çавах пурнăç малалла кайман, каялла чаксах пынă. Начарăн пĕр лашапа пушмак пăру пулнă, аптранă пирки Çĕн çĕре кайма шутларĕç. Пушмак пăрăва пусса, кăмакара ашне типĕтсе, шăнни-мĕнĕпех пĕр măйăха тултарчĕç, лаша кӳлчĕç те ĕçме-çиме илсе килтен тухса кайрĕç. Нумай кайрĕç-и, сахал кайрĕç-и, каç пулсан яла кĕрсе чăрмантарас мар тесе пĕр вăрман айăккинче выртрĕç. Вут хурса апат пĕçерчĕç те апата ларчĕç. Апат çинĕ чух арçынĕ каялла çаврăнса пăхнă та: кун хыçĕнче хупхура илемсĕрскер тăрать, çын хăраса чут вилсе каймарĕ тет. Çавăн чухах çакă хуп-хураскер сăмах хушса: «Мана апат çитарăр», — тесе каларĕ тет. Çын хăранипех каларĕ: «Эсĕ апат çияс тетĕн пулсан пĕчĕкленсе шăна пек пул, вара çитарăп». Хайхи хураскер шăна пулчĕ тет, çын ашне çынă чух туна шăннинчен нимине, сăсине кăларса илнĕ те шăнана каланă: «Çакăнта шăнă* шăтăкне (хăвăлне) миме (сăсă) юлашкине кĕрсе çи». Шăна çиме кĕрсен хай çын шăнă шăтăкне питĕрсе лартнă та вут вырăнне, кĕл айне, шăнăпа шăнана пытарса хăварнă. Вара киле каялла таврăнчĕç, хуллен йӳнеçтерсе, тăрăшса, майлашса, кунран-кун малалла кайса пуйса карĕ тет начар. Пуян начара курайми пуçланă та, пĕрре начартан ыйтнă: «Епле эсĕ пуйса карăн, эсĕ ĕлĕк начарччĕ», — тенĕ. Начар пуяна калать: «Çĕн çĕре кайма тухсан çанти вăрман хĕрринче темскер курăнчĕ те, шăна пулчĕ, шăнана шăнăваррине питĕрсе, кĕл айне туса хăвартăм, çавăнтанпа малалла карăм», — тĕпĕ-йĕрĕпе каласа панă пуяна начар.

Пуян начара кураймасăр вăрман хĕррине кайса, вут вырăнне тупса, кĕле чакаласа хайхи шăнна тупнă та шăтăкне уçса шăнана кăларнă. Шăна тухнă та, хуп-хура илемсĕрскер пулнă та каланă: «Рахмат сана мана кăларнăшăн, эпĕ çав начарăн Вупкăнĕ, эпĕ ĕнтĕ начар патне каймастăп, унтан хăратăп, санран, пуянтан, виличчен те уйрăлмастăп», — тесе каларĕ тет те куçа курăнми пулчĕ тет. Хайхи пуян кунран-кун начарланса пырса, пуянлăхĕ пĕтсе, виличчен хĕн-хур курса пурăннă тет. Пуян çын малалла кайнине кураймасăр пурăннă та хăех пĕтсе ларнă тет.

Çапла калаçаççĕ çын пурнăçне пĕтерекен Вупкăн çинчен.

* Шăмă.

### 1119

Пĕр чăваш почта ямшăкĕнче çӳренĕ. Пĕрре вăл почта кӳнĕ хыççăн килне, пĕр тăвата çухрăмра ларакан яла кайнă. Уйра ăна пĕр çуран хĕрарăм хăваласа çитнĕ. Унпа пĕрле пĕр-икĕ йытă пулнă. Çав арăм почта ямшăкне: урапа çине ларт мана тенĕ. Ямшăкĕ ăна лартнă. Ямшăкпа арăм пĕр-пĕринпе пуплеме тытăннă. Ямшăкĕ каланă: «Пирĕн яла выльăх мурĕ килсе кĕчĕ, surăхсем ытла та нумай вилеççĕ», — тенĕ.

Çав хушăра хĕрарăм урапа çинчен сиксе аннă та йытă пулса тăнă. Вăл вара хăйпе пĕрле килнĕ йытăсене тулла пуçланă. Туллама чарăнсан вăл каллех арăм пулнă та каллех ямшăк урапи çине улăхса ларнă. Ямшăк унран ыйтнă: «Ма эсĕ хупа пĕрле килнĕ йытăсене тулларăн?» — тенĕ. Лешĕ каланă: «Эпĕ — Киремет, вĕсем Вупкăнăн (мурăн) çурисем. Эпĕ вĕсене кашни килре виçĕ пуç выльăх хăварма каларăм, вĕсем пĕрне те хăвармаççĕ, йăлтах пĕтереççĕ», — тенĕ. Ял çумĕнчи çырма патне çитсен Киремет урапа çинчен анса юлнă.

Ямшăк килне таврăнсан хăй мĕн курни-илтнине хăйсен ялĕнчи юмăç карчăккине каласа кăтартнă. Юмăç ял çыннисене каланă: «Вупкăн чӳкне тăвас пулать», — тенĕ. Çынсем чӳк тума кĕрпепе çу илсе пынă, виçĕ хура путек халăхпа илсе пуснă. Виçĕ путек ашне виçĕ хуранта пĕçернĕ. Ашпа пăтти пиçсен кĕлĕ каласа пуççапнă. Кĕллине юмăç вуланă. Кĕллин сăмаххисем çаксем пулнă. «Э писмелле! Вупкăн турă, Вупкăн ашшĕ, Вупкăн амăшĕ, çырлаха парăр! Аша каçарăр! Ялта чир-чĕрсене тасатса тухса кайăр. Хĕнасап ан парăр. Тăвата кĕтеслĕ çанталăк, ăçта савнă çавăнта кайăр, пирĕн ялта ан пурăнăр!» Çав кĕлĕ хыççăн аш яшкине, ашне, пăттине çинĕ. Çисе ярайманнине пуснă путексен тирĕсене çĕр чавса тăпра айне пытарнă.

## Вутăш

### 1120

Шыври вăл пит усал теççĕ, вăл çынсене пит хăратать теççĕ. Вăл çынсене каçма çинче курăнать теççĕ.

### 1121

Тăр кăнтăрла шоа кĕнĕ чоня пĕр çăмартапа ик самла* татăкки пăрахнăччĕ, шу осалĕ çынна шоа тортса кĕртесрен.

Кирек ăсти шу патне те чиркĕве кайнă пак хăраса каяççĕ. Çăлкуç панче хытă калаçмаççĕ, колмаççĕ: шу тытать.

### 1122

Вутăш вăл шывра пурăнать. Вăл çынна евитсĕр шыв ĕçсен ӳслĕк ертет е урăх чирпе чирлеттерет, вара çавăнпа шыв ĕçме пырсан чăваш пĕр ывăç курăк татса шыва пăрахать çапла каласа: «Эпĕ ĕçмен, ватă вырăспа ватă майра ĕçнĕ», — тит, мĕншĕн тесен шывра пурăнакан (вутăш) вырăсран хăрать тиççĕ, тата вара шыв ĕçсе чирлесен шыва çăмарта е çăкăр, е çу, е çуллă пашалу (юсман) кайса яраççĕ, е тата килте нимĕр пĕçерсе чӳклеççĕ.

---

* Салма.

## 1123

Шыври шыврах порнать тет. Вăл çынсене шыва кĕрсен хăй патне шыва тортса илет тет. Хăй вăл турат пек алăсемлĕ тет, аллисем çăмлă тет, çанпа тытса тортнă чох та сисĕнмест тет.

## 1124

Шыва кайса вилнĕ çынсенчен Шыври пулать теççĕ. Шыва кĕнĕ чух чалăшса кĕрсессĕн Шыври туртса кĕртсе вĕлерет теççĕ.

## 1125

Ишме пĕлмесĕр шыва путнă ачасене Шуйттан тĕртсе кĕртрĕ пуль тесе калаççĕ.

## 1126

Шывра тата çăлта чăвашсем Вутăш пурăнать теççĕ. Вутăш çилленнĕ çынна час-часах ӳслĕк ярать. Çав ӳслĕкрен хăталас тесе шыва е çăла вĕсем çăкăр татăкĕ пăрахаççĕ.

## 1127

Ача чухнех çав пĕвере эпĕ ыттисемпе, хам пек атьсемпе, шыва кĕреттĕмччĕ. Пĕвене ытларах ыттисенчен кăмăллаттăмăрччĕ, мĕншĕн тесен ял варринчех те, килтен тух та, йĕмне хыв та, сик те чăм кутăн е пуçхĕрлĕ тӳрех. Астăватăп, питĕ нумай вăхăт хушши çапкалашрăмăр шывпа, тутасем кăвакарса кайнăччĕ, шăлсем пĕр-пĕрин çумне лекмеççĕ, хамăр чĕтретпĕр. Тепĕр куннех эпир виçĕ ача чирлесе ӳкрĕмĕр. «Тытнă сире!» — терĕ ун чухне атте. Эп ăнланмастăмччĕ-ха, мĕн вăл тытнă тени.

Анчах та атте Шыврине çырлахтарма ман çĕтĕлсе пĕтнĕ шăлавара илчĕ, çăкăр çине пӳрне хулăнăш сар çу сĕрчĕ, вара ирхине ирех, кăвак шуçăмпа (хĕвел тухиччен) кайса пăрахрĕ.

— Эпĕ мĕн тунине çын-мĕн тавраш курмалла мар, çын таврашĕ курнă пулсан вĕрсе-сурни ахалех пулатчĕ, — терĕ атте тепĕртакран эпĕ сывалса çитсен. Те чăнах çавă пулăшрĕ вара, темле, анчах та мана хама акă анне çупа вĕретнĕ сĕт ĕçтерни усă панă пек туйăнать.

## 1128

Чăвашсем çăлкуçĕсенче тата пысăк пĕвесенче Вутăш пурăнать тесе ĕненеççĕ. Çăлкуçĕсенчи Вутăш питĕ пĕчĕкçĕ тет; вăл тин çуралнă ача пек анчах тет. Çăлкуçĕнче пурăнакан Вутăш çынсемшĕн питĕ усăллă тет. Çынна вăл хăй пĕр сиен те тумасть тет. Пур çĕр айĕнчи палкаса тухакан çăл та çав пĕчĕкçĕ вутăшсем тапса кăларнипе тухать теççĕ. Анчах çăлкуçĕнчен шыв ăснă чухне-и, унта ĕçнĕ чухне-и: «Пĕсмелле, çырлах», — тесе ĕçмелле тет. Çавна асăнса ĕçмесессĕн вăл питĕ хурланать тет. Аптăранă енне вара: «Кăсене çавăн чухлĕ ырлăх кăтартнăçемĕн мана мăшкăлласа пурăнаççĕ; акă эпĕ вĕсене малашне сивĕ шывсем кăларса парам-ха, çырма шывĕпе

антăхса пурăнччăр вĕсем; тата пырĕсене шыçтарса ярам та, ахлатса ӳсĕрсе çӳреччĕр вĕсем», — тесе калать тет. Çавăнпа чăвашсенĕн е пырĕсем шыçаççĕ, е уярсенче çăлсем типе пуçласан: путех вутăшсене кам та пулин çиллентернĕ пулĕ тесе кашни çăлсем куçне хăшĕ йăва кайса пăрахаççĕ, хăшĕ нимĕрпе икерчĕ таткаласа пăрахаççĕ, тата хăшĕ-хăшĕ чĕрĕ çăмарта кайса яраççĕ; ăна вĕсем: «Шывĕ чĕрĕ çăмарта пек свеши* пултăр», — тесе пăрахаççĕ.

## 1129

Анне мана тата ак çапла каласа хăратрĕ: «Ехрем старик арманта чухне Шыв вăкăри тухса: кăçал мана çын паратра, выльăх паратра, эпĕ мĕн те пулин илетĕп тесе кăшкăрса кĕрсе кайрĕ тет».

## 1130

Пирĕн таврара Шыв мăкăрĕ пирки нăмай халап çӳрет. Пĕрисем калаççĕ, Шыв мăкăрĕ кайăк полнă теççĕ. Теприсем ăна Мăкăрах теççĕ. Коракансем те полнă-ха. Ирхине, хĕвел тохнă чохне, шап-шар Мăкăр ана çинче калча çисе çӳрет тет. Пысăк тет хăй. Мăкри порнасса çав, асăнтăмăр-ха, тĕпсĕр кӳлĕре порнать тет. Çав Мăкăр вăрçă тохас омĕн кăшкăрать тет. Хальхи вăрçă тохас омĕн те виççĕ-тăваттă му-ук! му-ук! тесе кăшкăрнă тет. Хăшĕсем калаççĕ, чӳрече ванни те полнă теççĕ. Шыв мăкăрĕ турккă, яппун вăрçисем умĕн те кăшкăрнă теççĕ. Ку пустуй япала вăл.

## 1131

Вутăш вăл хирти пысăк пусăсенче пурăнать теççĕ, пысăк шывсенче. Вăл хăй юратнă çын умне анчах тухса çӳрет теççĕ, вăл тухсан хĕр пулса çӳрет теççĕ.

## 1132

Пĕрре манăн асаннен аппăшĕ хăй çамрăк чух Маттик пĕви хĕрринче ларнă. Хăй çумĕнчех вăрăм хура хĕр ларнине курах кайнă. Хайхи асаннен аппăшĕ ун çине пăхнă та, унăн ури вырăнне пулă хӳри пекки тет. Хăранипе вăл сиксе тăнă. Вутăшĕ ун çине пăхса илчĕ тет те шыва чăмрĕ тет.

## 1133

Ёлĕк мунчасем шыв хĕрринче пулнă. Каçхине шыва кайма юраман. Пĕррехинче пĕр хĕр мунча хыççăн тухнă тет те тӳрех шыв хĕррине аннă тет. Шывран вăрăм çӳçлĕ хĕр тухрĕ тет те çӳçне тураса каялла кĕрсе кайрĕ тет.

## 1134

Ялти анатри пĕве ĕлĕк питĕ тарăн пулнă. Вăйпитти çынсем те шыва кĕме хăратчĕç унта. Темиçе çын путса та вилнĕ. Хăш чухне качча каяс хĕрсем те те асăрхамасăр, те намăса чăтаймасăр сиксе вилетчĕç. Шыва

* Кунта — таса пĕлтерĕшпе.

путса вилнисем вара Вутӑш пулаççӗ: çур кӗлетки пулӑ, çурри этем. Вӗсем сӗм çӗрле уйӑх çутинче симӗс çерем çине тухса лараççӗ, çӳçӗсене тураççӗ, кӑкӑрӗсем сӗт пек курӑнаççӗ. Вӗсем çынна курӑнмаççӗ, мӗншӗн тесен çын курсан вӗсен шутне татах хутшӑнмалла пулать тет.

## 1135

Пӗррехинче ял хушшипе пынӑ чух тем амакӗ пулчӗ. Чипер пынӑ çӗртех çӗтсе кайрӑм. Темле майпа çырма хӗррине çитсе лартӑм. Пӑч тӗттӗм. Кӗркунне. Йӗп чиксен те куç курмасть. Çырмаран ниепле те яла хӑпарайми мастӑп. Пӗр утӑм малалла та икӗ утӑм каялла тӑватӑп. Теплерен кӗпер еннелле пӑхса ятӑм та хам куççене хам ӗненмерӗм: 12 пике шап-шурӑ вӑрӑм кӗпепе (качча каяс хӗрсем пек), çурӑмӗ çинче тем вӑрӑмӑш çивӗт. Пурте пӗрле карталанса тӑнӑ та вӑйӑ юрри шӑрантараççӗ кӑна. Темччен сӑнаса ларнӑ пулӑттӑм... Анчах... Ялтан автан тӗнчене çурасла авӑтса ячӗ те, пикесем тахӑш вӑхӑтра чӑл-пар! куç умӗнчен çухалчӗç. Пирӗн ялта ку пӗвене ӗлӗкрен пуçласа халь тарана çити 12 çын шыва путнӑ. (Хӗрсем те, арӑмсем те, карчӑксем те.)

## 1136

Ӗлӗк, вӑрçӑ вӑхӑтӗнче, пирӗн ялти Мари акупа унӑн амӑшӗ Мӑчкаш çине кӗпе чӳхеме кайнӑ. Каясса каçпа кайнӑ тет, мӗншӗн тесен кӑнтӑрла колхозра ӗçленӗ, килти ӗççене тума вӑхӑт пулман. Мӑчкаш хӗрне çитрӗç тет хайхискерсем. Кӗпесем çума ятарласа тунӑ кӗпер çинче пӗр хӗп-хӗрлӗ кӗпе тӑхӑннӑскер ларать тет. Хӑй урипе шӑмпӑр-шӑмпӑр шыва пӑтрататать тет.

Мари аку амӑшӗн куçӗ витӗрех курман тет, вӑл калать тет ку хӗрлӗ кӗпеллине:

— Ах, ачам, ачам, шывне ан пӑтрат-ха, пирӗн кӗпесем чӳхемелле.

Лешӗ урипе шыва каллех шӑмпӑр-шӑмпӑр тутарса:

— Эп Усал та, — тесе калать тет.

Мари акун амӑшӗ татах:

— Ах, ачам, шывне ан пӑтрат-ха.

— Эп Усал та, — тесе калать тет лешӗ каллех.

Çав вӑхӑтра автансем шарлаттарса авӑтса ячӗç тет.

Хайхи Усал шыва шампӑр! чӑмрӗ тет.

Мӑчкашра ӗлӗк çав вырӑнта пӗр хӗрарӑм путса вилнӗ тет. Çавӑнтан пулнӑ тет вӑл.

## 1137

Ӗлӗк пирӗн ялсем ялтан тӑват çухрӑмри Чӑрӑш ятлӑ яла кукашшӗсем патне кайнӑ тет. Вӗсем кукашшӗпе Çавал ятлӑ шыв çине пул тытма аннӑ тет. Вӗсем аннӑ чух шыв хӗрӗнче пӗр Усал çӳçне тураса ларать тет. Кусем килне кайса, пӑшалпа перес тесе пӑшал илсе аннӑ тет. Авӑрласа хатӗрлесен перес тесе тӑчӑç тет, Усал шыва чампӑр! сикрӗ тет. Пӑх та, Усал çук та тет. Кусем Усал ларнӑ вырӑна кайса пӑхнӑ тет те сап-сар тура выртать тет. Кусем турине илсе киле таврӑннӑ тет те ыраш айне хунӑ тет. Çав ыраш авӑртсан та, сутсан та çав-çавах пӗтмест тет. Виçӗ çултан Усал турине шыраса ыраш айӗнчен тупнӑ тет те илсе кайнӑ тет. Кайран çак

çыннăн тырри часах пĕтнĕ тет. Тырри пĕтсен ма час пĕтнĕ тесе пăхнă тет те турине хунă вырне, тури çук та тет.

Çаксемех тепре чух пулла ансан питĕ нумай тытнă тет. Вĕсемпе пĕрле пĕр шампа тытнă тет, питĕ пысăк тет хăй, мăклансах кайнă тет. Киле таврăнма тăнă тет те, лаши те туртаймасть тет. Пĕри лашине çавăтнă тет, тепри хыçалтан утса пырать тет. Хыçалтан утса пыраканни: «Шойттанах полĕ конта, лаша та тортаймасть», — тесе калать тет. Унччен те пулмарĕ тет, çав çапла каласан мăкланнă пулă пуçне çĕклерĕ тет те каялла пăхса пырать тет. Хыçалтан утса пыракан малти çыннине: «Кай контан айккинелле, лат мар, пирĕн орапа çинче Шойттан пор!» — терĕ тет. Айккинелле кайсанах хай мăкланнă шампа орапа çинчен тухса ӳкрĕ тет, хӳрине çавăрса çыртса, орапа пек, шывалла кусса кайрĕ тет те Çавала çурса кĕрсе кайрĕ тет.

### 1138

Пысăк пĕвесенче пурăнакан Вутăш, çын пекех, çемьеллĕ пурăнать теççĕ. Ача-пăча çукки çак çутă çанталăкра пурăнакан е ачасене, е ваттисене шыв хĕрне пырсан шыв ăшне сĕтĕрсе кĕрсе каять те çавсене лаша вырăнне туса çӳрет тесе ĕненеççĕ. Çавăнпа вĕсем: пур шыва кайса вилнĕ çын та вутăшсемпе пурăнать тесе ĕненеççĕ. Вăл вутăшсем хăйсем çын манерех теççĕ: тĕсĕсем хуп-хура та, хăйсем çаппа-çарамасах пурăнаççĕ тесе ĕненеççĕ. Çав вутăшсем питĕ нумай пулĕччĕç тет те, анчах вĕсене ирхине ирех, хĕвел тухнă чухне, шыв хĕрне тухса выртсан кашкăрсем çиеççĕ тет. Çав çинĕ чухне вăл шăмми-шаккисене çисе яриччене кăшкăрать тет. Тăваннисем: Вутăша кашкăр çинине тата унăн тĕсне çулла питĕ ăшă чухне ирхине самăй хĕвел тухнă вăхăтра куратпăр теççĕ.

### 1139

Пĕрре пирĕн пата вырăс, Алексей ятлă ухатник, сăра ĕçме килнĕччĕ. Эпĕ унтан: «Вутăша епле кураççĕ-ши?» — тесе ыйтрăм. Вăл мана ак çапла каласа кăтартрĕ: «Пĕрре эпĕ уяр кун ирхине ирех пăшал çĕклерĕм те кайăк кăвакал пеме тесе Асан уйĕнчи Михалька арман пĕви таппине кайрăм. Эпĕ шыв хĕрне çитсессĕн пĕр пысăкрах кукăра кĕрсе, çакăнта кăвакал тавраш çук-и-ха тесе çаврăнса пăхрăм та, Тур çырлахах!.. шыв хĕрринче пĕр темĕскерлескер выртса парать. Ун чухне хĕвел чылай çӳле кайнăччĕ ĕнтĕ. Çынна калас пулсассăн унăн тĕсне-йĕрне ниепле те каласа парас çук: ни хура мар, ни сарă мар, хăй вара çарамас пек курăнать те, шыв хĕрринчех выртать. Йĕри-тавра кăмакаран сĕрĕм тухнă пек пăсланса выртать. Эпĕ ку мĕскер-ши тесе пĕтĕмпех тĕлĕнсе кайрăм, хам хăранипе шăм пек хытса кайнă, пĕр вырăнтан та тапранаймастăп. Унччен те пулмарĕ, тепĕр айккинчен курăк хушшисемпеле кашкăр йăпшăнса пыра парать. Ак ĕнтĕ! Ку мĕскерлескер? Çак япала патне кашкăр çывхарса пырать те пырать. Хайхине мĕн те пулин пулать тесе пĕтĕм вăйăмпа: «Уççах!» — тесе кăшкăрса ятăм. Çак япала кăшкăрса янă-яман шыва шампăл-л!.. тутарса кĕрех кайрĕ. Кашкăрри тата унăн хыçĕнчен шывра ниме пĕлмесĕр чăмпăртаттарса çӳрет. Эпĕ кусемпеле мĕн пулать-ха тесе хăранипе ни пăшал пеме пĕлмесĕр пĕтĕмпех хытса кайрăм. Пăртак тăрсан кашкăр шампăртаттаркаласа шывран тухрĕ те хăваналла кĕрех кайрĕ. Эпĕ

вара: «Çав пулчĕ пулать иккен Вутăш», — тесе киле таврăнтăм», — терĕ.

Вутăшăн тата укçа питĕ нумай тет, вăл çапла хăйне кашкăрсенчен кăшкăрса хăтарнăшăн çынна çĕклейми укçа парать тет. Çак çын та Вутăш кĕрсе кайнă тĕлтен çур хутаçа яхăн кĕмĕл тупнă теççĕ. Вăл ĕлĕк питĕ чухăн пурăнатчĕ тет. Халь çак Вутăша курнăранпа питĕ пуйса кайнă тет.

Чăнахах та, халь ăна пăхса паллас çук, хуçа пекех пурăнать.

## 1140

Пĕр ялта пурăннă тет пĕр чаплă сунарçă тата пулăçă. Пĕррехинче вăл, ир çинче, хĕвел тухичченех, хăй лартнă капкăнсене, пулă тытма пăрахнă хатĕрсене пăхма кайнă. Капкăнсенчен мулкачсене илнĕ те шыв хĕррине утнă. Ун сĕрекинче пĕр шампа пулă çапкаланса выртнă. Пулла илес тесе пĕшкĕннĕ те пулăçă — шывра пĕр питĕ илемлĕ, хура вăрăм çӳçлĕ, çарапакка хĕр мĕлкине курах кайнă. Йăвă турапа пуçне тураса ларнă, никама та асăрхаман. Сунарçă пуçне çĕклесе пăхать те кашкăр пынине курах каять.

Сунарçă уххине кăларать те кашкăра перет. Хĕр курăннă вырăнта шыв ункисем çеç тăрса юлнă. Сунарçă çак хĕр Вутăш пулнине тин ăнланса илнĕ тет. Кăшт тăхтасан сунарçă патне çак хĕр каллех тухнă. Ăна вăл кашкăртан çăлса хăварнăшăн тав тунă та малашне уншăн ăна çĕнĕ пӳрт лартнă чух пулăшма сăмах панă.

— Халь кай та хăвна килĕшнĕ вырăна суйла, — терĕ тет.

Сунарçă кайрĕ тет, ял варринчи чи лайăх вырăна çитсе чарăнчĕ тет, туйипе виçĕ хутчен çĕре тапрĕ тет:

— Вырăншăн мĕн чухлĕ тӳлемелле? — тесе.

Çĕр айĕнчен темле сасă:

— Çулталăкра пĕр çын чунĕ, — тесе каларĕ тет.

Ытла хаклă тесе сунарçă урăх вырăна суйларĕ тет, пур çĕрте те е лаша, е ĕне, е сурăх ыйтать тет çĕр. Юлашкинчен çӳп-çап пăрахнă çырма тĕлне çитсе ыйтсан тин:

— Çулталăкра пĕр уксах чĕп пулсан çитет, — тенĕ тет çĕрĕ.

Хресчен çак вырăна çурт лартрĕ тет. Вутăш ун патĕнчен кайнă чух, кирлĕ кунта хăйне асăнма хушса куçран çухалчĕ тет.

Çĕнĕ çуртра çак хресчен аван пурăнма пуçларĕ тет. Выльăх-чĕрлĕх нумайланчĕ тет. Тискер кайăксем ун выльăхĕсене тивмен тет, пăрпа çумăр тыр-пулне ватман тет. Кашнинчех, Вутăша аса илсен, лешĕ ун умне хитре хĕр пулса пырса тăнă тет. Хăш-пĕрисем каланă тăрăх, вăл çав хресченĕн картишĕнчи шетнекри шыврах пурăнать тет, çĕр айĕнчи шыв тăрăх юхан шыва кайса çӳрет теççĕ.

## 1141

Шăва потса вилнĕ çынсенчен шу осалĕсем (русалкăсем) полнă. Вăсам шăва кĕрекен çынсене хăйсем патне астарса илсе кĕрсе вĕлереççĕ. Çур çĕр варринче выляма тухаççĕ те шу çине хăшĕсем макăраççĕ, хăшĕсем ахăраççĕ, кулаççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ. Çав тĕле çын пырса тухсан хăйсем патне астарса кĕртеççĕ, вĕлереççĕ. Çав усалсем пĕвене тытса тăнă татăлса каясран.

## 1142

Вутăш тесе шыва кайнă е арман айне янă хĕре калаççĕ. Вăрăм çӳçлĕ пулать вăл, усал мар.

Çĕр те пилĕкре вилекен асаннен амăшне шыва янă пулнă. Шыва янă тĕлте пĕр каччă пулă тытса ларнă пулнă. Çак пырать те кун патне: «Мана хăçан качча илен?» — тесе калать тет. Каччи вара ялти çынсене каласа парать çак хĕр çинчен. Ял çыннисем вара ăна кайса илеççĕ. Шыва янă хыççăн путман иккен вăл. Халиччен мĕнле тата ăçта пурăнтăн тесен вăрманта пурăнтăм тесе калать тет. Никам та йăхăрмасăр хăйĕн таврăнма юраман унăн.

## 1143

Тăр кăнтăрла тĕлĕнче шыва кĕме юрамасть. Шăлт кăнтăрла тĕлĕнче вутăшсем, шыврисем шыва кĕреççĕ тет.

Пĕррехинче ачасем кăнтăрла шыва кĕме анаççĕ тет, кӳлĕ хĕрринче çап-çарамас хĕр çӳç тураса ларать тет. Çӳçĕ сап-сарă та вăрăм тет, ылтăн тĕслĕ. Çак ачасене курчĕ тет те шыва шампăр-р! сикрĕ тет, турине манса хăварнă тет, тури ылтăн пулнă тет. Ачасем турине тупса киле илсе килнĕ. Хĕветӳк илнĕ тет турине. Каçхине, çывăрма выртсан, пынă тет те çак, турине ыйтать тет:

— Хĕветӳкки, туриккине пирикки! Туриккине пирикки! — тесе пит хурлăхлăн йăлăнать тет чӳречерен пăхса.

Автансем авăтсан тин кайрĕ тет чӳрече айĕнчен.

Хĕветӳк ирпе ирех турине шыв хĕррине кайса хунă вара. Каярах кайса пăхнă та — тури çук тет. Турине çухатсан Вутăша пит асаплантараççĕ тет шыврисем.

## 1144

Сиккассинче пĕр пулăç пулнă, Сăрнай ятлăскер. Вăл Вăрăм шывĕ урлă пĕррехинче тетел карса хунă тет те пĕр пит лайăх шăм тура лекнĕ тет. Пулăç турине килех илсе каять. Тепĕр кунне пулă тытма татах каять. Шыври тетеле памасть.

— Туракне перем, туракне перем, — тесе калать тет.

Вара пулăç турине киле кайса илсе килет те шыва пăрахса парать. Шыври тетеле парса ярать.

## 1145

Пĕр каçă хуçи вăл каç пĕчченех Сăр çинче йолнă полнă. Ыйăх питех килместь тет. Вара кăшт тохам-ха тесе пӳртĕнчен тохрăм тет. Онччен те полмарĕ тет, тепĕр енче: «Каçар-ха!» — тесе кăшкăрнă сасă илтрĕм тет. «Мĕн ку çĕр хута çӳрет», — теп тет. Лешĕ нумай кăшкăрнă, каçă хуралçи леш енне каçнă вара. Çыранта çӳçне-пуçне салатса янă пĕр хĕрарăм ларать тет, хăй хытă макрать тет. Ку: «Мĕн полчĕ?» — тесен, «70 çолхи ати вилч», — тесе каларĕ тет лешĕ. Вара каçарч. Ток каçса çитрĕм тет, каялла каçар та, каялла каçар тесе йăлăнма пуçларĕ тет хайхи. Кăна шик кĕнĕ: «Конта каçаратăп, каялла каçармастăп», — тенĕ. Пĕр вон отăм отсан çаврăнса пăхнă — лешĕ çок тет.

## 1146

Пĕрре пирĕн ялти Екким ĕçлесе тарланă хыççăн Енĕшре шыва кĕме шутланă. Кăштах çăвăнкаланă хыççăн месĕрле ишсе чунне кантарма шутланă. Пырать çапла Екким майĕпен ишсе.

Сасартăк шыв вăйлăн шăмпăртатма тытăнать. Чунĕ шикленнĕ Екким çыран хĕрринелле ишме тапратать. Çыран хĕрне тухнă-тухман шывран пĕр пысăк çăмламас кĕлетке курăнса каять. Хăраса ӳкнĕскер япали-мĕнĕсене пăрахсах тарма тытăнать Екким. Чупсан-чупсан хыçалтан хулăн сас:

— Екким! Йӳпли юлать, йӳпли! — тесе кăшкăрнине илтет. Анчах, хăранăскер, каялла çаврăнса пăхмасăрах малалла чупать. Сăрта хăпарса çитсен каялла çаврăнса пăхать те Шыври унăн йĕммине саркаласа тăнине курать.

Çавăн хыççăн вара Екким шыва кĕме пăрахнă. Кĕрес пулсан та халăх нумай чухне кăна кĕрет.

## 1147

Пирĕн ялтан инçех мар, çырмара, пĕве хĕрринче вăрман сиплĕхĕнче пĕр çăлкуç пур. Ăна Эреке çăлкуçĕ теççĕ. Унăн шывĕ яланах сип-сивĕ. Нумаях пулмасть çав çăлкуçа алтса пураласа лартрĕç. Халь унта кашни иртен-çӳрен чарăнса шыв ĕçет.

Пĕррехинче пĕр кĕтӳç питĕ шăрăх çанталăкра кĕтӳне пĕве хĕрне хăваласа антарнă хыççăн хай çăлкуç патне шыв ĕçме пынă. Вăл унта питне, аллине, кĕлеткине çунă. Унччен те пулмасть, çăлкуçран пĕр чипер çамрăк салтак тухать. Вăл кĕтӳç патне пырса ларчĕ тет те хăйне çăкăрпа тăвар пама ыйтрĕ тет. Кĕтӳçĕ пачĕ тет кăна мĕн ыйтнине. Çисе тăрансан салтак кĕтӳçе тав туса каллех çăлкуçа кĕрсе кайрĕ тет.

Тепĕр виçĕ кунтан çак кĕтӳçĕ вилнĕ. Çынсем вара çак çăлкуç хăватне ĕненме пуçланă.

## 1148

Вутăш шыва кĕрекенсене хуçлатса лартса авăра та шыва путарать е тата хитре хĕрарăмсене астарса хăйĕн еркĕнĕ тăвать тет.

Ĕлĕк Çавала Вутăш ернĕ тет. Вăл Ункăра, Сĕлескертен çӳлерехри авăрта пурăннă тет. Çав авăра халь те Вутăш авăрĕ теççĕ. Çав Вутăш утă çулма аннă хĕрсене юратса пăрахнă тет те вĕсенчен хăйĕн еркĕнĕ тăвасшăн пулнă тет. Хĕрсем килĕшмен пулать. Кĕçĕн çынсем те çаплах килĕшмен тет. Вара Вутăш тарăхать те Чăвашри мĕнпур вучахри вут-кăвара сӳнтерет — ним тума та çук.

Улăп ват карчăксем вĕрентнипе, Вутăша мĕнле тĕп тăвасси çинчен Юхма старикрен ыйтса пĕлет. Юхма сӳпĕлти пулнă тет, суеççене юратнă тет. Улăп ăслă та чее пулнă та, çав Юхма старике чике тăршшĕ лартса хĕвел татăкне илет Вутăша хуса яма. Хĕвел татăкки Вутăша кунтан хуса ярать, чăвашсен каллех вучахра кăвайт çунать.

## 1149

Вутăш вăл çырмара пурăнать тет. Ăшă, лăпкă вăхăтра вĕсем çыран хĕрне тухса ларнă тет ĕлĕкхи вăхăтра. Тухьясемпе, хушпусемпе тухса ларнă тет.

Çапла вара вĕсене ялти çынсем тыта-тыта ялта качча панă. Çавăнтан

Вутăш племисем пулса кайнă тет. Хальхи вăхăтра та ĕçчентерех, тирпейлĕрех, правуртарах çынсене Вутăш племи пуль эсир тесе калаçнине илтетĕн.

## 1150

Пирĕн ати Çĕнĕ çул каçĕнче мунчана чул илме кайнă. (Чулне пуç айне хунă тет те, вара тĕлĕкре çывăх юлташĕ, тусĕ куранна тет.) Ăна мунчара пĕр хĕр ярса тытнă тет те: «Качча ил, — тесе калать тет, — кĕпейĕм илсе кил», — тет. Каччи вара тухса кайнă. Туй халăхне пуçтарса аялти çырмари мунчана илсе кайнă. Мунчана кĕрсе хĕрне тумлантарса тухнă. Ку вăл Вутăш пулнă тет, шывпа пĕрле мунчана лекнĕ пулнă тет.

## 1151

Ятлашки Вутăш йăхĕнчен тухнă теççĕ. Вăл пĕрреччен вăрмана каять. Вутă касать-касать, пĕр лавлăх пулсан лав çине тиеме пуçлать. Рычаксем касса хурать, çыхма пуçлать лавне. Хăйне пулăшма чĕнет те, пуçтарнать тет вĕтĕ халăх ăна пулăшма. Çапла вут тиесе таврăнать тет пит лайăх.

## 1152

Пĕр хĕрарăм (вутăш таврашĕнчен) стариккипе вырма çӳренĕ тет. Стариккипе каять тет — нумай выраймасть тет. Стариккисĕр каять тет — нумай вырать тет. Шăпăр-шăпăр калаçать тет, вĕт çынсем пулăшаççĕ тет. Старикки кăна тĕрĕслеме шутлать тет. Кайнă тет хире, арăмĕ вырнă çĕре. Шăп тĕм çĕкленĕ чух пырса тухать тет ку. Арăмĕ вилсе çухалчĕ тет кун.

## 1153

Шывра, тарăн çĕрте кирек ăçта та Вутăшсăр пулмасть теççĕ. Вăл Вутăш чисти çын пекех тет, анчах ӳчĕ кăвак тет, вăрăм çӳçлĕ тет вăл вара, шăрăх вăхăтра хĕвел ăшшине тухса пуçне тураса ларать тет, хăш чухне хĕвел ăшшине тухса çывăрать те тет. Çав çывăрнă вăхăтра вăрттăн пырса часрах хĕрес тăхăнтарсан вăл вара шыва ниепле те кĕреймест тет. Вара çынна пит йăлăнать тет, мĕн чухлĕ укçа ыйтнă, ун чухлĕ укçа парать тет. Вутăшăн ун укçа пит нумай тет. Тата хăш вăхăтра, çав хĕвел ăшшинче çывăрнă чух, ăна кашкăр та тытать тет...

Ильтукан аслă улăха лашасем çитерме кайнă, вăл Кăнна хĕрринче Вутăш хĕвел ăшшинче çывăрнине курах кайнă. Унтан часрах вăл хăй çумĕнчен хĕресне хывса илнĕ те çав Вутăша тăхăнтартнă, лешĕ вара сасартăк сиксе вăраннă та: «Эх, каччăм! Сан пултăм ĕнтĕ эпĕ», — тенĕ. Вăл Вутăш хĕрĕ пулнă иккен, унтан вара шыва кĕреймен те: «Каччăм, эпĕ сан арăму пултăм ĕнтĕ», — тенĕ вара. Унтан вара ăна Ильтукан тытса таврăннă та хăй арăмĕ тунă. Вăл Вутăш хĕрĕпех пурăннă вара, лешĕ ун панче ĕçе те вĕреннĕ вара, ачаллă-пăчаллă та пулнă вара...

## 1154

Пĕр ялта пĕр каччă пурăннă тет. Ахванеç ятлă. Çак каччă вара 12 хĕр юратнă тет. Пĕрре çапла, улах ларнă чухне, хĕрсем Ахванеçе юратнипе унăн çĕррине хывса илеççĕ те шыв пичкине яраççĕ тет. Ахванеç çĕррине

илес тесе пичкене аллине чиксе ярать, ниепле те илеймест тет. Хӗрӗсем тытаҫҫӗ те ӑна пичке ӑшне кӗртсе ӳкереҫҫӗ. Урисенчен тытса тӑраҫҫӗ. Ахванеҫ ниепле те ҫӑлӑнаймасть, шывра пӑкӑр-пӑкӑр тӑвать. Хӗрӗсем: «Ку кулать-ха», — тесе калаҫҫӗ тет. Ҫапла вӗлереҫҫӗ хӑйсен юратнӑ каччине, никама та ан пултӑр тесе. Виллине никам та ан куртӑр, ан пӗлтӗр тесе вутӑ хутса, Ахванеҫе кӑмакара ҫунтарса яраҫҫӗ. Ир енне ял ҫине питӗ ырӑ мар шӑршӑ сарӑлать. Ял-йыш вара ӑнланать хӗрсем Ахваниҫпе мӗн тунине. Ирхине чеерех хӗрӗсем тухса тараҫҫӗ. Ахванеҫе вӗлернӗшӗн — юлнӑ хӗрӗсене тытса каяҫҫӗ. Вӗсем пӗр 5—6 юлнӑ пулнӑ. Тытса кайнӑ чухне хӗрӗсем ҫапла юрлаҫҫӗ тет:

Вун иккӗн уллах лартӑмӑр,
Пӗр качча вӗлертӗмӗр.
Чеереххисем тарса пӗтрӗҫӗ,
Пире тытса илчӗҫ те
Ҫӳссене касса ячӗҫӗ,
Каторшниксем туса хучӗҫӗ.

Ҫав тарса саланса пӗтнӗ хӗрӗсене кайран вутӑшсем тесе каланӑ тет. Вӗсем ҫынна вӗлерсен те тарса хӑтӑлса лайӑх пурнӑҫпах пурӑннӑ, качча кайнӑ, ача тунӑ. Ҫавӑнпа вӗсене «вутӑшсем» тенӗ.

Пирӗн ялта пӗр карчӑк хӑйне вутӑш пӗлеминчен тесе калатчӗ тет. Ватӑсем: «Ҫав хӗрсенчен пулса кайнӑ пуль ӗнтӗ вӑл», — теҫҫӗ.

## Усал

*Усал — пайӑр ятлӑ сиенлӗ вӑй — нумай халап-юмаха кӗрсе юлнӑ. Усал мӗнле пулса кайнине ӑнлантаракан хайлаллӑ хайлавсемпе пӗрлех кӗнекене «курни-илтни» халапӗсен тӗслӗхӗсене те кӗртнӗ.*

### 1155

Туррӑн хӑй умӗнче тӑраканӗсем 12 пулнӑ. Ҫакӑ пӗри Турӑ хушнине итлемен тет. Вӑл хӑй Турӑ пуласшӑн пулнӑ тет. Вара вӑл хӑйне пӑхӑнса тӑракан кӗҫӗн ангелсене хӑй май пӑсса пӗтернӗ тет. Вара вӗсем те Турӑ хушнине итлеми пулнӑ. Вара вӗсене Турӑ ҫилленнӗ те пӗлӗт ҫинчен хӑваласа антарса янӑ. Вара вӗсем хуп-хура хуралса кайнӑ тет. Вӗсенчен ҫӗре ӳкекенни Киремет пулнӑ, вӑрмана ӳкнисем Усал пулнӑ, хире ӳкни Йӗрӗх пулнӑ, шыва ӳкни Шуйттан пулнӑ. Самӑй аслине тамӑках антарса янӑ тет. Вӑл халӗ те тамӑкрах ларать тет.

### 1156

Шуйттан вӑл хуп-хура, ӗне пекех мырякаллӑ тата ҫунатлӑ тет, вӑл мӗнтен пулни ҫинчен пӗр ҫын каласа кӑтартрӗ мана. Акӑ ҫапла каларӗ: «Туррӑн ӗлӗк питӗ аслӑ ангелӗсем 5 пулнӑ тет. Вара ҫавӑ 5 ангел ытти кӗҫӗн ангелсене пӑхса тӑнӑ тет. Вӗсенчен пӗри темшӗн питӗ капӑрланса кайнӑ тет, Турӑ хушнине итлемен тет, вара вӑл тата хӑйне пӑхӑнса тӑракан кӗҫӗн ангелсене те пӑсса пӗтернӗ тет. Вара ҫавӑ аслӑ ангела тата ҫавна пӑхса тӑракан кӗҫӗн ангелсене те Турӑ ҫӳлтен ҫӗре хӑваласа янӑ, вара вӗсем хуп-хура тата мырякаллӑ пулса кайнӑ. Шыва ӳкни Шуйттан пулнӑ, типӗ ҫӗре ӳкни е Киремет, е Йӗрӗх, е Тӳркӗлли».

## 1157

Шуйттан та, Усал та пĕр япалах. Ĕлĕк турăсемпе пирĕштсем анчах пулнă. Тĕнче пуçлансанах Турă çĕр, çут çанталăк тунă. Усалсем пулман.

Пĕр Пирĕшти Турра, ашшĕне, итлемен. Пĕрре калать, тепре калать — итлемест. Вара Турă ăна хăй хăвачĕпе çапса вĕлерет. Юнĕ сирпĕннĕ те, çав юн тумламĕсенчен усалсем пулнă.

## 1158

Усалсем çынна кушак пек те, йытă пек те, тĕслĕрен выльăх пек те, çын пек те курăннине калаçаççĕ. Хăшĕ тата вут пек, пысăк çын пек курнине те калаççĕ. Вĕсем çынна тĕслĕрен хĕн-хур кăтартса, çулти çынна хăратса, аташтарса пĕтерме тăрăшаççĕ теççĕ.

Кушкăра пĕр Крахьян ятлă карчăк пурăннă. Пĕрре ăна мункун эрнинче çĕрле çывăрнă çĕртен хĕреснай ывăлĕ: «Атя, хреснанне, сăра ĕçме, аннесем чĕнме ячĕç», — тесе вăратса килĕнчен илсе тухса кайнă. Килне çитеççĕ тет, хăй çути пур тет, хапхине питĕрнĕ тет. «Атя, атя, хреснанне, луччĕ хапха айĕнченех кĕрĕпĕр», — тесе калать тет те хăй хапхи айĕнчен йăккăрт кĕрсе кайнă тет. Карчăк та хапха айĕнчен кĕрсе выртать тет те: «Пĕсмĕлле», — тесе калать тет. Çапла каласан пăхать тет, çурт та çук тет, нимĕн те çук тет. Карчăк авăн вучаххин алăкне икĕ енчен тытса вырта парать тет. Авăн вучахĕнче лăк тулли шыв тет. Хĕреснай ывăл пек пулса карчăк патне Усал пынă тет иккен. Чăвашсем нумайăшĕ халĕ те çĕрле тултан чĕннĕ пек сасă илтетпĕр теççĕ. Çав сасса хирĕç вара: «Пушă мар, кĕл виçетпĕр, тăвар виçетпĕр!» — тесе калаççĕ тет.

## 1159

Пĕр салтака вырăна çитсен ик уйăхран хурала янă тет. Тăрсан-тăрсан çакăн патне пĕр йытă хăйсен офицерĕн йытти пек курăнса пычĕ тет. Йытти питĕ ачашланса тăрăх сикет тет. Салтак йыттине çывăха ямасть тет. Вăл офицер килет пуль тесе кĕтсе тăрать тет. Анчах никам та пымасть тет. Улшăнсан салтак юлташĕсене мĕн курнине каласа кăтартрĕ тет. Юлташĕсем: «Унта ĕлĕк те салтаксем çухалнă, вăл йытă мар, Усал», — терĕç тет. Тепĕр уйăхран çав салтакăн каллех çав вырăна хурала каймалла пулчĕ тет. Салтак офицера: «Эп унта хурала каймастăп», — терĕ тет. Офицерĕ: «Мĕншĕн каймастăн тата?» — тесе ыйтрĕ тет. Салтак: «Унта Усал пур», — терĕ тет. Офицер: «Выльăх-чĕрлĕх пулса пырсан пăшалпа персе пăрах, çын пулсан, виççĕ чĕнсе чĕнмесен ăна та персе пăрах», — терĕ тет. Вара салтак хурала кайрĕ тет. Пăртак тăрсан салтак нăтăрт-нăтăрт тунине илтех кайнă тет. Пăхнă, пĕр ĕне курăк çисе çӳрет тет. Ним тума пĕлмесĕр салтак хырсене хуçса пăшал ăшне ярса пăшалне пере панă тет, ĕни йăваланса кайнă тет. Салтаксем пăшал сассипе хурал пӳртĕнчен чупса тухрĕç тет. Салтаксем: «Мĕн пулчĕ, мĕн пулчĕ?» — тесе ыйтаççĕ тет. Салтак: «Усала персе пăрахрăм», — терĕ тет. — «Ăçта вăл?» — тесе ыйтрĕç тет. — «Авă вăл выртать», — терĕ тет. Ĕнине аяккалла йăвантарса ярса, салтакне улăштарса хурал пӳртне каялла кайрĕç тет. Кăвак çутăпа салтаксем кайса пăхрĕç тет, ĕни çук тет. Çакăнтан кайран çак вырăнта пĕр салтак та çухалмарĕ тет.

## 1160

Пирӗн ялтан инҫе мар вӑрман пур, ҫав вӑрман хӗрринче пӗр уҫланкӑ пур. Ҫав уҫланка кӗрсен ҫын аташать теҫҫӗ (анчах халь темшӗн аташтармасть, тӗлӗнмелле).

Аслӑ атте калать: «Ҫуркунне вӑрман ешерсен карӑм вӑрмана, уҫӑлса, курса савӑнса ҫӳреме. Вӑрмана ҫитсен аташтаракан уҫланка кӗрсе пӑхас терӗм. Аташмӑп-ха тесе шухӑшлап. Унччен те пулмарӗ, пӗр йытӑ нӑйӑлтатнӑ сасӑ илтӗнех кайрӗ, эпӗ шаларах кӗтӗм.

Утап-утап вӑрманпа. Хӗрри те ҫук, вӗҫӗ те ҫук. Ак, амутке, ӑҫта-ши эп тесе шухӑшла пуҫларӑм, аташрӑм пулас тесе хыпаланарах уткалап, анчах ниҫтан та тухаймастӑп.

Пит пысӑк шухӑша карӑм, кун каҫала еннелле сулӑннӑ, хӗвел анасси инҫе мар. Хӑра пуҫларӑм, куҫа тем-тем курӑнать. «Эх, Турӑ, — терӗм, — ӑҫта-ши эп?» — терӗм. Анчах ахаль кӑшкӑртӑм, ниҫта ним те ҫук, пурте ҫавах. Мӗн тӑвас, хӗвел анчӗ, тӗттӗм пулать, эп тухаймастӑп. Тем шӑй тунӑ сасӑ илтӗнет. Ак, Тур ҫырлах, мӗн пулчӗ-ши, ак тата хытӑран хытӑ хай йытӑ вӗрнӗ сас илтӗне пуҫларӗ. Ӑҫта каяс, мӗн тӑвас? Турра кӗлтӑватӑп — вӑл та пулӑшмасть. Ирччен аташрӑм. Ирхине вӑрмана пынӑ ҫынсем илсе карӗҫ», — тесе халапа пӗтерчӗ аслӑ атте.

Вӑл ҫӗре усаллӑ ҫӗр тетчӗҫ. Унтан тата унта тутарсене пуснӑ теҫҫӗ, ҫавсем аташтараҫҫӗ теҫҫӗ. Халь ӗнтӗ вӑрманне те касса пӗтернӗ, пӗр ҫын та аташмасть.

## 1161

Усала шывран пулнӑ теҫҫӗ. Пӗр матка вак хӗрне кӗпе ҫума аннӑ тет. Усал шывран сикнӗ тухнӑ тет те хӑй пуҫне касса татрӗ тет, ҫав матка пуҫӗ тӑрне лартса ячӗ тет. «Ҫакӑнтан малашне мана пӑхӑнса пурӑнӑр, манӑн формпа* ҫӳрӗр», — тесе каларӗ тет ҫав Усал. Ҫавӑнпа халӗ чӑваш маткисем сурпансем сырса, хушпусем, тухьясем, хӳресем ҫакса ҫӳреҫҫӗ, ҫавӑнпа ҫав авалхи йӑлана пӑрахмаҫҫӗ. «Хам формпа ҫӳресен эпӗ сире питӗ юратӑп», — тесе каларӗ тет Усалӗ.

Вилсен вара сурпанне йӗвен туса, нухайккапа ҫаптарса утланса ларса кӗрсе каяҫҫӗ тет шӑтӑкалла. Хӑй формпа ҫӳренӗшӗн ҫапла тӑвать тет Усал. Усала вакри шывран пулнӑ теҫҫӗ.

## 1162

Стан ялӗнчи Эхвер Петӗрне усалсем лаша туса таканласа кӳлсех кайрӗҫ тет. Вӑл пурӑннӑ чух калатчӗ тет: «Эпӗ вилсен мана хуть те таканласа ҫӳретчӗр», — тесе. Ӑна таканлама усалсем тимӗрҫе кашни уришӗн пилӗкшер тенкӗ панӑ, тӑват уришӗн ҫирӗм тенкӗ панӑ тет.

## 1163

Нумай пулать ӗнтӗ вӑл, хам ҫамрӑк чухнех пире, ялти ҫамрӑксене, вӑрмана вут хатӗрлеме ячӗҫ. Ӗҫлесен-ӗҫлесен каҫ пулчӗ, эпир кӑвайт чӗртсе йӗри-тавра ларса тухрӑмӑр. Тахӑш вӑхӑтра, сисмерӗмӗр те, ҫил-тӑман тухрӗ.

* Ман пек.

Эх, çавăрать, йывăçсем шартлата-шартлата çурăлаççĕ. Унччен те пулмарĕ, кăвайт умĕнче вут шăтăрт! турĕ те пирĕн умах ÿкрĕ. Хамăр хăрарăмăр. Эпĕ тек чăтаймарăм, пуртта ярса илтĕм те хуçăлнă йывăçа кĕррĕс! тутартăм. Унччен те пулмарĕ — çав çапнă йывăçран çын шăмми юр çине вĕçсе анчĕ.

Тахçан çак вăрманта Упанкка вилнĕ тет, вот çав хăратса çÿретчĕ тет. Халĕ çав çырмана Упанкка çырми теççĕ.

## 1164

Пирĕн ял çуммипе Çавал шывĕ юхса выртать. Унта тĕрлĕ авăрсем нумай: Çĕлен авăрĕ, Шăхăракан авăр, Сентер авăрĕ...

Ваттисем тĕрлĕрен каласа параççĕ çав авăрсем пирки.

Авăрта салтак путса вилнĕ те, халĕ ун ячĕпе Сентер авăрĕ теççĕ. Çур çĕр тĕлĕнче унта Усал курма пулать теççĕ. Инçех мар ларакан вăрмантан пĕр вутлăункă çаврăнса, вирхĕнсе тухать тет те çулăм сирпĕтсе ташлама тытăнать тет. Йĕри-тавра никам та пулмасан нумаях чупса çÿремест тет Сентер авăрĕ тавра. Çын пулсан ун патне салтак пек пулса пырать тет. Унран туртма ыйтать тет. Табак илме аллине тăссан пÿрнисем сиксе чĕтреççĕ тет, куçĕсем пăр куççем пек йăлтăртатаççĕ тет. Ÿсĕр çынна чăтма пултараймасть тет вăл. Çапла пĕрре Пимен Романч Сăкăт ялĕнчен ĕçсе килнĕ тет те Хăла çырмине канма ларнă тет. Кĕç ун патне урапапа пĕр çын пырса чарăннă, ним чĕнмесĕр ватма тытăнчĕ тет. Ах ватать тет, пачах хĕрхенме пĕлмест тет. «Ан ват», — тесе ыйтсан: «Хĕл каçнă пăрăва пар, вара ватмастăп», — тет. Вилес килмен ĕнтĕ Пимен Романчăн — килĕшнĕ вара. Çав кунах килĕнче вăл çитнĕ çĕре хĕл каçнă пăрушĕ вилсе выртнă тет.

## 1165

Пирĕн ялтах ĕлĕкрех вăрман çĕрне кăк тиеме кайнă тет пĕр çын. Кăк тиесе таврăннă чух çĕрле пулнă тет, уйăх çути çап-çут тет. Кун умĕнчен пĕр шур сурăх пырать тет. Ку старик çăкăрпа илĕртсе тытнă тет те çыхса урапи çине хунă тет. Киле çитсен сурăха вĕçерсе янă тет те хăй пÿрте кĕнĕ тет. Пÿртре маткине: «Эпĕ сурăх тупса килтĕм», — тесе калать тет. Матки тухса пăхнă тет те, сурăх ниçта та çук тет. Кайран старикки: «Усалах пулчĕ пуль», — тесе калатчĕ тет.

## 1166

Çĕр ятлă усал йывăç ăшĕнче пурăнать тет. Вăл çĕрле çынсене вăпăр пуснă пек пусать. Малтан вăл пĕчиккĕ, кайран пысăкланать, хăмпу пек. Виссар мучи ун çинчен çапла каларĕ: «Пĕре эпĕ Чураша кайнăччĕ. Манамар тĕлне çитрĕм. Тĕттĕм. Пĕр сысна пекскер ман хыççăн пырать. Ай-ай, пысăкланнăçемĕн пысăкланать. Капан пек пулчĕ. Эпĕ уна хăвалатăп. Вăл хытăрах. Çулран пăрăнтăм та тин хăтăлтăм: вăл иртсе кайрĕ». Курти пичче те каларĕ: «Эпĕ пĕре Муркаша кайса, Муркаш вăрманĕнчен тухрăм та тĕлĕнсех кайрăм: вăрман хĕрринче арман. Кам лартнă-ха ку армана тетĕп. Манăн арман капан пулчĕ тăчĕ».

## 1167

Тӗрерте пӗр ҫын ҫула лашасене шыва кӗртет тет. Ҫакӑн чухне ҫакна Усал урaран ячӗ илчӗ тет. Ҫак ҫын тем пек тытӑнчӗ тет Турра кӗлтума, ҫапах ямаҫ тет. Кайран ҫак хӑй ангелне асӑнсан темле ячӗ тет. Тытнӑ тӗлтен ури пӗтӗмпех кӑвакарса шыҫса аннӑ тет.

Хӗлле, раштав умӗн, ача ушкӑнӗ пӗр улахран тухса тепӗр улаха каять тет. Ҫаксен Тӗрер урлӑ каҫса каймалла. Ҫырма хӗрне ҫитсен пӑр ҫинче такамсем темскерле ҫунапа темиҫен пӑр тӑрӑх каяҫҫӗ. Ни лашисем лаша пек мар, ни ҫуни ҫуна пек мар, ни хӑйсем ҫын пек мар. Ҫаксем ачасене курсан тӑруках пӗтсе ларчӗҫ тет. Ачасем хӑранипе ним тума аптраса кайрӗҫ тет. Аран-аран вырӑнсенчен тапранса килелле кайрӗҫ тет.

## 1168

Каҫпа, пӗр 11 сехетре, хунькассинчен таврӑнапчӗ. Пӑхап: ик ҫын хирӗҫ утса килеҫҫӗ. Килнӗҫемӗн пысӑкланса пыраҫҫӗ. Унтан вӗсем ут пулчӗҫ тӑчӗҫ. Эп сӑхсӑхма пуҫларӑм. Ман патнелле хӑртлатса пыраҫҫӗ. Тепре сӑхсӑхрӑм та, таҫта кайса ҫухалчӗҫ. Вара эпӗ каялла Станьяла таврӑнтӑм. Ҫав кунах ҫав ялта ҫын вилнӗ пулнӑ.

## 1169

Пӗррехинче ир-ирех Елен кӳршӗ яла каять. Кӳршӗ ялӗ пӗр-икӗ ҫухрӑмра пулнӑ. Хӑйне кирлӗ ӗҫпе кайнӑ. Каялла килме тухсан чипер пынӑ ҫӗртех хыҫалта сас илтет. Каялла ҫаврӑнса пӑхать те хуп-хура лашасем килнине курать. Лашине ирттерсе ярас тесе айккинелле пӑрӑнать. Анчах та лашасем ун патне ҫитсен чарӑнаҫҫӗ. Ҫуна ҫинче лараканни: «Ӑҫта каятӑн?» — тесе ыйтать. Елен калать: «Урхас Кушкӑна каятӑп», — тет. Лаша ҫинче лараканни: «Лар, эпӗ те ҫав яла каятӑп», — тесе калать тет. Елен ку ырӑ япалах мар пуль тесе шухӑшлать тет. Вара кӗрӗк аркине пуҫтарса тытать те: «Турӑ ҫырлах!» — тесе калать те ҫуна ҫине ларма тӑрать тет. Анчах та ҫуна ҫине ларас вырӑнне ҫӗре лак! анчах ларнӑ тет. Хуп-хура лашисем питӗ хытӑ ҫулӑм кӑларса малалла кайнӑ тет. Ҫак хуп-хура пар лашасем пулман тет, усалсем пулнӑ тет.

## 1170

Пӗр яш ҫын олаха кайнӑ та олахран ҫор ҫӗрпе киле килме тохнӑ. Вӑл анкарти хыҫпе килме шотланӑ. Анкарти хыҫне тохсан Шетмӗ ҫолӗ ҫине пӑхать те пӗр вӑ-ӑ-ӑ-рӑм ҫын килнине корать. Яш ҫын хыпаланса отма тытӑнать, ҫын та хыҫҫӑн хытӑ килет. Тепре ҫаврӑнса пӑхнӑ ҫӗре хайхи ҫын пысӑк капан полса тӑнӑ. Яш ҫын хыпаланса ҫол орлӑ каҫса тарнӑ та каялла пӑхнӑ. Хайхи капан ҫӗр ҫӗмӗрттерсе ҫырманалла анса кайнӑ. Яш ҫын вара тӑнсӑр полса выртса йолнӑ тет.

## 1171

Авалхи чӑвашсем теҫетина йӑранӗпе Усал ҫӳрет тенӗ. Унта выртса ҫывӑрсан ҫын пӑсӑлать тет. Е чирлет, е тӑрса таракан пулать, е аптӑратакан (припадок) чир ерет. Пӗр ҫын ҫапла выртса ҫывӑрса, ӑна анрат-

са ӳкерекен чир ернĕ тет. Тепри тата уксак пулнă тет. Вăл йăрана урлă выртнă тет. Тăрăх выртни аптратмасть тет, урлă выртма юрамасть тет. Усал калать тет: «Ман çул çине каска выртнă, мана иртме çук», — тесе калать тет.

Теприсем тата тырă выраççĕ тет. Ани Киремет çырмине пырса тăрăнать тет. Шăнкăл-шăнкăл, шăнкăл-шăнкăл шăнкăрав сасси илтĕнет тет. Пĕчĕккĕ кăна шăнкăрав тет. Пăхаççĕ тет: таянчăклă павуска пырать тет, пар лаша кӳлнĕ тет. Ик лаши те хуп-хура тет. Павускинче иккĕн ларса пыраççĕ тет. Хуп-хура тет хăйсем. Иккĕш ик еннелле тайăнса ларнă тет, иккĕш те чикаркка туртаççĕ тет. Кăсем вырнă çĕре пырса тухаççĕ тет хайхи хура çынсем. Çитрĕç тет те тăчĕç тет. «Çул çтан каять?» — теççĕ тет. Çтан каять çул? Малта çыран. Кайра та йăран анчах; аслă çул çывăхра та çук, кăлухуй вырăн. Çапла пăхкаласа тăнă чух куç хупса уçиччен хура çынсем çук пулчĕç тет. Вăт епле ĕлĕк усалсем кĕретлетсе çӳренĕ.

## 1172

Усал-тĕсел тĕрлĕрен япала пулса халăх çине тухать тет: е çăмха, е выльăх-чĕрлĕх т.ыт.те. Ăна яланах мĕн те пулин тумалла тет, мĕн те пулин паллă лартса ямалла тет. Хӳреллĕ чĕр чун пек япала пулсан хӳрине татмалла тет. Хӳре — вăл хĕрарăмăн пиçиххи кантри çеç тет.

Пĕррехинче çамрăксем клуба тухсассăн киле килнĕ чух вĕсемпе пĕр мăнтăркка сысна явăçрĕ тет. Çамрăксем ăçта, сысна та вĕсем хыççăн тет. Пĕр çамрăкĕ кĕсйинчен пекĕ кăларчĕ тет те сыснан сăмсине питĕ пысăк çеç касрĕ тет.

Тепĕр кунне халăх çине пĕр хĕрарăм тухмарĕ тет. Унăн сăмси пулман тет.

## 1173

Пĕр çуллахи ăшă каçпала Мăн Пакăш ялĕнчен арçынсемпе арăмсем хăнаран юрлакаласа таврăннă. Вĕсене хирĕç шавласа та кашлатса çул тăрăх капан пек япала куçса килнĕ. Ĕлĕк ку вырăнта туй арăмне усалсем вăрласа юлнă пулать. Çавă халĕ çул çине тухнă пулнă. Çавна тытас тесе арçынсем пĕр-пĕрне аллинчен тытса çул урлă тăнă тет. Капан кĕрлесе иртсе кайсан вĕсен аллине пĕр туйла тумланнă арăм юлнă пулать. Вĕсем сисиччен хĕрарăм çĕнĕрен капан пулса, аттипе таплаттарса малалла çил пек вĕçтерчĕ тет.

## 1174

9—10-мĕш класа эпир Муркаш районĕнчи Нискассинчи вăтам шкула çӳреттĕмĕрччĕ. Шкула Силепĕк вăрманĕ урлă каймалла. Пит инçе каймаллаччĕ, пĕр 6—7 çухрăм пур.

Ку вăл хĕлле пулса иртсе. Яланхи пекех, хамăр ял ачисем ял пуçне пухăнтăмăр. Сивĕ. Тĕттĕм. Ну, хуллен вăрмана çитрĕмĕр. Эпĕ хамăн юлташ хĕр ачипе хыçаларах юлтăм. Ыттисем хытă кайрĕç, эпир хуллен утса пыратпăр. Сасартăк сылтăм енче темле сасă илтĕнсе кайрĕ. «Çывăхра ял та çук вĕт», — тесе шутлатăп, сурăх сасси пирĕн хыçран пырать. Галя çине пăхкаласа илетĕп. Вăл та тем сиснĕ пек шăп пырать. Вăрман хĕрне çитеспе, пĕр 20 метр юлсан сурăх сасси сисмен хушăрах çухалчĕ.

Вăрмантан тухсан эпир тата хытăрах утма пуçларăмăр. Ял патне çитсен мана Галя: «Валя, пĕлетни, Чемей енче тем сурăх макăрнă сасă илтĕнчĕ», — тесе каларĕ.

Килте каçхине аттепе аннене каласа патăм. Анне вара: «Ку сурăх макăрни çинчен çынсем çапла калаççĕ. Пĕр сурăхĕ Силепĕк вăрманĕнче, тепĕри Самантиш вăрманĕнче макăрать тет. Çак сурăхсем вĕсем хĕрсем пулнă тет. Çапла макăрса вĕсем пĕр-пĕрне шыраççĕ, чĕнеççĕ тет. Çак хĕрсем ватăлса вилсен вĕсем тин макăрма чарăнаççĕ тет.

## 1175

Пĕррехинче мучи кŭршĕ яла хăнана кайрăм тет. Киле килме тухнă чух тĕттĕм пулнă ĕнтĕ. Эрех ĕçнипе чунĕ хăпартланнăскер ыраш хушшипе юрă шăрантарса çеç пынă. Çав вăхăтра ыраш хушшинчен пĕр хĕрарăм тухнă та мучипе пĕрле юрă юрлама тытăннă. Хайхискерсем юрла-юрла ял патнеллех çывхарма тытăннă. Хĕрарăм врахăнрах та врахăнрах утма тытăннă. Юлашкинчен, ял патнех çитсен пачах утма чарăнчĕ тет.

## 1176

Пĕр-пĕр хĕр ача туса вĕлерсессĕн Усал пулать теççĕ. Çав ачаран пулнă Усал çынна ерсе чирлеттерсе вĕлерет теççĕ. Çынна ернĕ Усал çын патне е çын, е йытă, е кушак, е пыркка* пулса пырать теççĕ.

## 1177

Çын вилсен вилнĕ çыншăн хытă макăрма юрамас тет. Нумай макăрсан вилнĕ çынна леш тĕнчере йывăр тет. Тĕк çитар** çине выртса пĕрмай йĕме юрамас тет. Тĕк çитартан Усал ерет тет.

## 1178

Çын сăра-мĕн тунă чухне усалсем: «Халĕ те хăмла ытларах яринччĕ, ытларах яринччĕ», — тесе илĕртсех тăраççĕ тет.

Пирĕштисем вара хăмла ярсан: «Пелет! Пелет!» — тесе çынна пăрахса кайса хĕрĕх те пĕр кунччен яхăна пымаççĕ тет.

## 1179

Пĕр ялта пĕр çын авланнă тет, арăмĕпе питĕ килĕштерсе пурăннă тет, нихăçан та пĕрне-пĕри усал сăмах каламан тет.

Пĕр Усалăн çаксене питĕ ятлаçтарас килнĕ тет, анчах ниепле те май тупаймасть тет. Вара вăл ялтан тухса каять тет, пĕр хусах арăмпа тĕл пулать тет. Вĕсем калаçса каяççĕ тет. Усалĕ хăй шухăшне хусах хĕрарăма каласа парать тет. Ку арăм:

— Мĕн те пулин илсе пар мана, вара сана вĕрентĕп, — тет.

---

* Кăркка.

** Хытă минтер.

Усал ăна пушмак илсе пама пулать. Ку хусах арăм çак упăшкипе арăмĕ патне каять тет.

— Ай, эсир мĕнле питĕ лайăх пурăнатăр, пĕрре те ятлаçмастăр, — тет. — Санăн стариккун мăйĕнче, пырĕ тĕлĕнче, пĕр тĕк пур, çавна татсан вăл сана татах юратĕ, — тет.

Унтан ку хусах арăм унăн упăшки патне уя каять те:

— Уй, Мишша, сана арăму вĕлерме шутлать, çĕрле эсĕ çывăрнă вăхăтра çĕçĕпе касать, — тет.

Ку арăм каланине Усал та итлесе çӳрет.

Упăшки киле пырсан çикелесен çывăрма выртнă пек пулать, арăмĕ мĕн тăвасса сыхласа выртать. Куçне уçса пăхать, арăмĕ чăнах та çĕçĕ илнĕ те ун патнелле пырать. Ку сиксе тăрать те арăмне:

— Эсĕ мана вĕлерессшĕн-и? — тесе килтен хăваласа кăларса ярать.

Тепĕр кунне хусах арăмпа Усал тĕл пулаççĕ, Усал хĕрарăм патне çывхарма хăрать тет, пĕр вăрăм шукля* илчĕ тет те пушмаккисене ун вĕçне çыхрĕ тет, хусах хĕрарăма упăшкипе арăмне вăрçтарса янăшăн памалли пушмаксене шукля вĕçне çакса пачĕ тет. «Ку мана та тем тăвĕ», — тесе шутлать тет хăй.

## 1180

Пĕр тимĕрçе çĕрле чӳречерен пырса шаккаççĕ. Тимĕрçĕ тăрать те чӳрече патне пырать. Шаккаканнисем:

— Эпир инçетри çынсем. Пирĕн лаша таканĕ хăпса кайрĕ. Таканласа параймăн-ши? — теççĕ.

Çынна пулăшас пулать вĕт. Тимĕрçĕ тумланать те палламан çынсемпе пĕрле лаççалла утать. Çитет, пăхать — пĕр лашин таканĕ чăнах та хăпнă. Тимĕрçĕ лашана таканлама тытăнать. Лаши:

— Тархасшăн, хытă ан çап, ыратать. Эпир лаша мар, çынсемех. Усалсем çакăнса е путса вилнĕ çынсене лаша туса, çуна тупанĕ туса çӳреççĕ, — тет.

Тимĕрçĕ кусене итлет те хытă çапмасть. Таканласа пĕтерсен ку çынсем каяççĕ. Тимĕрçĕ те киле каять, çитет: хапхине питĕрсе хунă, ниçтан та кĕреймест, шаккать — никам та вăранмасть. Тимĕрçĕ хапха айĕнчен кĕрес тет, кĕреймест. Çур çĕр те çитет, автансем авăтса яраççĕ. Пăхать тимĕрçĕ, хăй вак хĕрринче выртнине курах каять. Пуçне вакка чиксе пăхать — кĕреймест. Вара вăл хăйне усалсем улталанине туйса илет. Тăрать те киле каять.

## 1181

Ĕлĕк пĕр салтак каçхине вăйăран таврăннă. Ун мунча патĕнчен иртсе каймалла пулнă. Салтак мунчара макăрнă сасă илтет. Иккĕмĕш каç иртсе кайнă чух та çав сассах илтет. Виççĕмĕш каç салтак тӳсеймест, мунчана кĕрсе пăхма шутлать. Мунчана пырса кĕрет те тĕлĕнсе каять. Мунчара хитре хĕр ача ларать тет. Салтак ыйтать: «Эсĕ мĕншĕн макăратăн?» — тет. Вара хĕр ача салтака каласа парать: «Мана килтен усалсем хăйсен ачипе улăштарса кайнă, — тет. — Ун чух эпĕ çиччĕре пулнă. Халь çирĕме çитрĕм, — тет. — Мана кунтан никам та çăлаймас», — тет. «Эпĕ сана çăлатăп», — тет

---

* Шалча.

салтак. Хĕр калать: «Эсĕ тимĕр кăшăл илсе кил, — тет. — Çав тимĕр кăшăла ман пуç çине тăхăнтарт, — тет. — Сана кăтăклĕç, майран пăвĕç, — тет. — Эсĕ мана алăк урлă туртса кăларма тӳсĕм çитерсен мана хăтарăн», — тет. Салтак хĕр каланă пек тăвать. Тепĕр каçхине çур çĕр тĕлĕнче тимĕр кăшăлпа мунчана пырать. Хĕре кăшăла пуçне тăхăнтарса алăк урлă туртать. Салтака усалсем кăтăклаççĕ тет. Мăйĕнчен пăваççĕ, шăлĕсемпе шаккаççĕ тет. Салтак пурпĕрех тӳсĕм çитерсе хĕре туртса кăларать. Кун хыççăн хĕрĕн ашшĕ-амăшĕ патне каяççĕ. Юриех хваттере кĕнĕ пек тăваççĕ. Апат çиме ларсан кил хуçи арăмĕ хĕр çине питĕ хытă пăхать. «Мĕншĕн хытă пăхатăн?» — тет хĕр. Хуçа арăмĕ макăрса ярать. Вара çапла каласа парать: «Пирĕн те сан пек хĕр пурччĕ, — тет. — Çиччĕре чухне çухалчĕ, — тет. — Сăнран та каснă лартнă сан пекехчĕ», — тет.

Юлашкинчен хĕр тӳсеймес, хăй вĕсен хĕрĕ иккенне пĕлтерет. Хăйне салтак мĕнле майпа çăлнине каласа парать. Ашшĕпе амăшĕ ниепле те ĕненесшĕн мар тет. Амăшĕ хĕре калать: «Мана ĕнсӳ хыçне кăтарт», — тет. Хĕр ĕнси хыçне кăтартать. Карчăк хĕр ĕнси хыçĕнче хăй шыранă тур паллине курать. Вара тин ку хăй хĕрĕ пулнине ĕненет. Вара хĕре макăра-макăра ыталаса илет.

## 1182

Чăвашăн улах ларас йăла авалтанах пырать. Çапла хĕрсем пĕрре улах ларнă. Каччăсем пырса хĕрсем çумне кĕрсе лараççĕ. Пĕр хĕр перчетке çыхнă: хăраххине пĕтернĕ, тепĕрне пуçланă. Çумĕнче ларакан каччă çыхса пĕтернĕ перчеткене тăхăнса пăхать те:

— Ку ман валли пулать-и? — тет.

Хĕр:

— Ял хĕрринчи мунчана кайса алсана хăрăмпа хурат, пĕр чулне илсе кил, вара пулать, — тет.

Ку мунчана çынсем çĕрле пырса кĕме хăранă. Каччăсем вара хăйсене хăрамасăр тыткалаççĕ. Ку каччă перчетке тăхăнать те мунчана тухса каять, кĕрет, пĕр чул илет те тухма тăрать. Çав вăхăтра ун умне лапка айĕнчен пĕр хитре хĕр тухса тăрать. Каччă хăраса ӳкет.

Хĕр:

— Илсе кай мана кунтан, — тет. — Мана качча ил. Унсăрăн мана кунтан ямаççĕ, качча илсен тин яраççĕ, — тет.

Каччă:

— Ыран илсе каятăп, — тесе тухса тарать, улаха çитет те чулне кăтартать: пурте тĕлĕнсе каяççĕ.

Анчах унтанпа хăй яланах шухăшлă, пуçне чиксе çӳреме пуçлать. Çапла хуйхăллă çӳренине амăшсем те кураççĕ. Тата кашни каçах чӳрече умне пĕр хĕр пырса йĕрет, качча хăй патне пыма чĕнет. Вара каччă ашшĕ-амăшсене мĕн пулса иртни çинчен каласа парать. Ашшĕсем качча çав хĕре илсе килме хушаççĕ. Ку çав хĕре илсе килет. Пĕрлешеççĕ. Хĕрĕ питĕ хитре, ĕçчен пулнă, каччăпа питĕ килĕштерсе пурăннă тет.

Пĕрре хĕр упăшкине калать:

— Атя-ха аннесем патне хăнана кайса килер, — тет.

Упăшки тĕлĕнсех каять: хĕре мунчаран илсе килнĕ вĕт-ха. Çапах арăмĕпе килĕшет те хăнана каяççĕ, пĕр яла пырса кĕреççĕ.

Хĕр:

— Ман аттесем çак ялта пурăнаççĕ, — тет.

Акă вĕсем пĕр киле пырса кĕреççĕ. Амăшĕсен сăпкара пĕр ача выртать. Лешсем ку хĕре палламаççĕ те. Хĕрпе упăшки алăк патне лараççĕ те хуçисемпе калаçма пуçлаççĕ. Хĕр калать:

— Ку сирĕн ача миçере вара? — тет.

— Çирĕмре ĕнтĕ, ни ӳсмест, ни утаймасть. Çирĕм çул сăпкара выртать, çирĕм çул кăкăр сĕчĕпе тăрантарса усратăп, — тет амăшĕ.

— Ачуна çĕклесе çап-ха, — тет хĕр.

— Ара, ачана мĕнле çĕклесе çапăн? — тет хĕрарăм.

— Апла сирĕн ачăра мана тытса курма юрать-и? — тет хĕр.

— Тытса кур, ара, — тет кил хуçи арăмĕ.

Хĕр ачана сăпкаран илет те çĕре çĕклесе çапать. Çав хушăрах ачаран вут пуленки пулса выртать. Хĕр:

— Ав эсĕр ача тесе мĕн пăхса усратăр. Пĕчĕк ачана эсĕр ĕлĕк пӳрте пĕччен пăрахса хăварнă, сирĕн ачăра Усал вăрласа кайнă, ачăр вырăнне вут пуленки хурса хăварнă. Вăрласа кайнă ача эпĕ пулатăп. Эпĕ сирĕн хĕр, çирĕм çулта. Мана çак çын хăтарчĕ. Халĕ вăл ман упăшка, — тет.

Вара ашшĕ-амăшĕсем савăнсах каяççĕ, хĕрĕпе кĕрӳшне хăналама тытăнаççĕ.

Ваттисем каланă: «Ачана пӳрте пĕччен хăварма юрамасть, Усал улăштарса каять теççĕ», — тенĕ. Усал вăл хăш чухне ача вырăнне шĕшлĕ хурса хăварать тет. Ачана пӳртре е хирте пĕччен хурса хăварас пулсан унăн пуç вĕçне тимĕр япала хурса хăвармалла тет. Анчах çĕçĕ хума юрамасть тет, Усал унпа ачана вĕлерсе хăварать тет. Ачана Усал ылмаштарса хăварнине пĕлсен алла тытмалла мар, чĕр хăвапа: «Усал, ачана пар!» — тесе хĕнемелле тет. Вара Усал ачана каялла пырса парать тет.

Пĕрре çапла амăшĕ ачана пĕчченех пӳрте хăварнă тет. Кĕрет тет, ачине пăхать тет, ача темле хăйĕн мар пек тет. Вара хĕрарăм хăй ачине Усал улăштарса кайнă тесе ăнланса илет тет те ачана хăвапа хĕнеме тытăнать тет: «Усал, ачана пар! Усал, ачана пар!» — тесе хĕнет тет. Ачи йĕрет тет. Усалĕ калать тет:

— Ачана ан хĕне, пырса илетĕп, — тесе калать тет, тархаслать тет.

Вара Усал йĕре-йĕрех хăй ачине хĕрарăм ачипе улăштарса кайрĕ тет.

Тата урăхла та пулнă тет. Пĕр хĕрарăм каçалапа ачине кăкăр çитерсе çывăрттарчĕ тет, алкумне тухрĕ тет. Нумаях та иртмерĕ тет, пӳртре ачи шари! çухăрса ячĕ тет. Хĕрарăм пӳрте чупса кĕчĕ тет те пăхать тет, ачи çĕрте вырта парать тет. Сăпкара тепĕр ача выртать тет: Усал хĕрарăм ачине сăпкаран кăларса та хунă тет, улăштарса кайма анчах ĕлкĕреймен тет. Хĕрарăм макăракан ачана илет те кăкăр çитерме тытăнать. Усал ачи те çиесшĕн йĕрет тет.

Усалĕ:

— Ачана çитер! — тесе калать тет.

Хĕрарăм çитермест тет. Вара Усал хăйĕн ачине йĕре-йĕрех илсе тухса кайрĕ тет.

**1183**

Ĕлĕк вăрмана кайма питĕ хăранă.

Акă Ачча вăрманĕ пирĕнтен çур çухрăм анчах пулать. Çак вăрман ĕлĕк питĕ çĕтернĕ.

Пӗррехинче пӗр ушкӑн хӗр вӑрмана кайнӑ тет. Кусем вӑрманта алхаснӑ, вылянӑ. Ҫакӑншӑн вӗсене Усал ҫилленнӗ, сӗм касчченех ҫӗтерсе ҫӳренӗ, тухма паман. Юлашкинчен вара хӗрсем пӗр-пӗринчен те ҫӗтсе кайнӑ.

— Эй, Маруҫ! — тесе кӑшкӑрать тет пӗр хӗрӗ.

Усалӗ Маруҫ пек пулса, хӑй патне чӗнсе тата шаларах илсе кӗрет тет.

Виҫӗ кун ҫӗтсе ҫӳренӗ хыҫҫӑн ҫаксем пурте вӑрман хӗрне тухаҫҫӗ тет те ҫакӑнса вилеҫҫӗ тет. Халь те ку вырӑна Хӗр уҫланки теҫҫӗ. Унта питӗ ҫӗр ҫырли пулать.

## 1184

Пӗр ҫын ҫулпа пырать тет. Каҫ пулса килет тесе хытӑрах утма тытӑнать тет. Хыҫалта лаша килни курӑнчӗ тет те, ҫуна ҫинчи ҫыннисем каларӗҫ тет: «Айта лар, леҫсе хӑвӑратпӑр», — терӗҫ тет. Ку ҫын савӑннипе хӑпарса ларчӗ тет. «Спаҫип сире, ырӑ ҫынсем», — терӗ тет. Лаша аран туртать тет. Пӗр ял патне ҫитсен ку ҫыннисем калаҫҫӗ тет: «Эс ларса юл, эпир час тухатпӑр», — тесе хӑвӑрт кӗрсе ҫухалчӗҫ тет. Ҫыннисем кӗрсе кайсанах Лаша ҫын сассипе калаҫма пуҫларӗ тет: «Эсӗ мӗне пӗлсе ҫакӑнта ларса пыратӑн. Ку ҫынсем — усалсем вӗт. Халь ҫакӑнти ҫынна вӗлерме килчӗҫ. Вара пире, леш тӗнчере, пӗрисене лаша туса, пӗрисене ҫуна пуҫ туса хураҫҫӗ те ӗҫлеттереҫҫӗ. Канма та вӑхӑт ҫук, эпӗ сирӗн кӳршӗ ялти Ҫимук Иванӗ пулатӑп. Мана ак лаша турӗҫ. Эсӗ, ырӑ ҫыннӑм, ҫуна ҫинчен сиксе анма тӑрӑш. Тулькӑш ахаль ҫӗре мар, пилеш пур ҫӗре сиксе юл, усалсем вӗсем пилеш йывӑҫран хӑраҫҫӗ. Вӗсем кам ҫакӑнса вилет, ҫавсене лашасем туса ӗҫлеттереҫҫӗ. Кунти хӗрарӑма та вӗсем хӑйсем хӗтӗртсе ҫакӑнтараҫҫӗ». Тата нумай калаҫатчӗ пуль Лаша, анчах пӳрте кӗнӗ ҫынсем хӑвӑрт тухни чӑрмантарчӗ ҫакскерне.

Вара ҫын, Лаша каланӑ пек, пилеш патне ҫитсен сиксе юлать. Усалсем ҫакна сиссе пилеш кутӗнче чупрӗҫ-чупрӗҫ тет, анчах та ҫынна тытаймарӗҫ тет. Ҫын ҫакӑнтах ҫӗр касрӗ тет.

Ир еннелле хай ҫын пӑхать тет, хӑй ӑҫта тӑнине те пӗлмест тет. Вара аса илсе каялла каям-ха тесе каялла утрӗ тет.

Ҫӗр каҫ ҫав ял патӗнче, пӳрт умне лашине тӑратса кӗрсе кайнӑ ҫӗртре, чӑнахах та хӗреҫ тӑнӑ тет. Ку ҫын вара ҫынсенчен ыйтать тет: «Ку хӑҫан тата мӗнле вилнӗ?» — тесе. «Ара, ӗнер каҫ тем шут тытнӑ, ҫакӑнса вилнӗ ҫав, шеремет», — тесе калаҫҫӗ тет ҫынсем. «Чӑнах та, ӗнер каҫ лаша ҫинче усалсемех пулнӑ ҫав. Латнӑ лаша пӗлтерчӗ мана, мана та вӗлеретчӗҫ вӗсем», — тесе малалла утрӗ тет ҫак ҫын.

## 1185

Пӗр ялта икӗ хӗрарӑм пурӑннӑ тет. Вӗсен иккӗшин те упӑшкисем вилнӗ. Пӗрре ҫӗрле ҫаксем патне такамсем килсе шаккарӗҫ тет.

— Камсем эсир? — ыйтаҫҫӗ хӗрарӑмсем.

Лешсем каламаҫҫӗ тет камсем пулнине.

— Сирӗн патӑра упӑшкӑрсем килмелле, кӗтсе илме хатӗрленӗр.

Тӗлӗнеҫҫӗ хӗрарӑмсем. Ҫавах ҫав куна валли хатӗрлерӗҫ тет ӗҫме-ҫимеллисем.

Чӑн та, каланӑ вӑхӑта ҫитрӗҫ тет кусен упӑшкисем.

Савăнса кайрĕç тет арăмсем. Пĕрле ĕçсе çиеççĕ, савăнаççĕ тет. Пĕр хĕрарăмĕ пач ĕçмерĕ тет.

— Пире ăсатса ярăр, — теççĕ тет упăшкисем.

Тухрĕç тет ăсатма. Хайхи эрех ĕçмен хĕрарăмĕ пăхать тет: упăшка тенисен тумтир айĕнчен хӳресем курăнаççĕ тет. Хăраса ӳкрĕ, мĕнле хăтăлмалла кусенчен?

— Пуç ыратать, пыраймастăп ăсатма, — тесе каларĕ тет вара.

Лешсем кайрĕç тет. Вĕсемпе пĕрле кайнă хĕрарăмĕ каялла таврăнмарĕ тет. Упăшкасем пек пулса килнисем усалсем пулнă тет. Вĕсем леш хĕрарăмне вĕлерме илсе кайнă тет.

## 1186

Пĕр çын Çавалта кимĕ вĕçне хыр хăйăи çутса пулă тытса çӳрет тет. Хыр хăйăи çутипе шыв тĕпĕнче мĕнпур япала пурте курăнать тет. Çапла çӳренĕ чух пур пулă шыв майлă выртаççĕ, пĕр пулă анчах шыва хирĕç выртать тет. Çавна ку тĕллесе сăнăпа чике пачĕ тет. Пулă Çавала хирĕç шыва çурса, çухăрса кайрĕ тет. Ку çын часрах кимĕ çинчен тухса киле хыпаланса тарать тет ку латлă пулă пулас çук тесе. Çур çула çитсен каялла çаврăнса пăхрĕ тет те хăй хыçĕнчен темскер хураскер хуса пынине курчĕ тет. Сăхмансене хывса юпа çине тăхăнтарса хăварчĕ тет те, хăй тата хытăрах килелле тарчĕ тет. Ирхине пырса пăхнă тет те, юпа çӳлтен пуçласа аяла çитичченех çурăлса аннă тет. Çавна Усал çапнă, çын çавăнтах тăнсăр пулса вилетчĕ тет.

## 1187

Хĕрлĕ çыр сăртĕнче, пĕр авăрта, кĕтӳпе усалсем пурăнаççĕ тет. Унта шыв хĕрринче хăва тĕмĕсем пур. Çав хăва кутне пĕчиккине йăвасем туса пăрахаççĕ тата укçа, мамалесем тата ытти япаласем те пăрахаççĕ.

Пĕрре кĕркунне, салтака чĕннĕ вăхăтра, урам тăрăх салтак ачисем юрласа тухса каяççĕ тет. Çавăн чухне пĕр юлташĕ апат çисе ларать тет. «Ман юлташсем юрласа çӳреççĕ, манăн та каяс-ха», — тесе тухса чупрĕ тет. Урама тухсан çаксен юрланă сасă арман хыçĕнче пек илтĕнет тет. Çитес тесе ку тата хытăрах чупа пуçларĕ тет. Арман хыçне çитсен сасă çăва хыçĕнчен илтĕннĕ пек тет.

Çапла пĕрмаях сасă аякран аякка илтĕнсе пырать тет. Çак çын вилес пек, нимне пĕлмесĕр чупать тет. Кăна хирĕç пĕр çын тепĕр ялтан килет тет. «Эсĕ ăçта капла чĕслех чупатăн çак?» — терĕ тет. «Ман юлташсем кайрĕç-çке çавăнталла», — терĕ тет ку. «Эпĕ никама та курмарăм-çке», — терĕ тет хирĕç пулаканĕ. Вара ку мана тĕнче усалсем илĕртсе кайрĕç-çке тесе киле таврăнчĕ тет. Чăнласах, ачисем килĕнчех лараççĕ тет.

## 1188

Пелепей уесĕнчи Кожай-Ик-Вершины ятлă ял чăвашĕ Левентӳк Тихăнĕ пĕрре хĕллехи уйăх çутиллĕ каç çуни çине ларса Пелепей хулине кайнă. Çапла вăл лашине юрттарса пынă хушăра хыçалта шăнкăрав сасси илтĕннĕ. Ку пар лашаллă çуна пулнă. Çав пар лаша чăваша хуса çитнĕ те иртсе те кайнă. Тихăн пĕччен юлас мар тесе лашине çав пар лаша хыççăн хăвала-

рах панӑ. Ҫӑнах та, вӑл пар лашаран нумаях юлман: лешӗ куҫ умӗнчех пынӑ, шӑнкӑравӗ тӗнкӗлтетни те кӑшт илтӗннӗ. Ҫапла пынӑ ҫӗрте чӑвашӑн ҫуни тӑкӑлт-тӑкӑлт тунӑ та сасартӑк ӳпӗнсе кайнӑ. Тихӑн: «Пӗсмелле, Турӑ», — тесе каласа янӑ. Ҫав сӑмаха каласанах малта пыракан пар лаша таҫта кайса кӗнӗ, ҫул та ҫухалчӗ тет. Ҫул вырӑнне кӗрт тултарнӑ ҫырман тарӑн лупашкийӗ пулса тӑнӑ иккен. Тихӑнӑн лаши ҫав лупашкана кӗрт ӑшне кӗрсе ӳкнӗ те малалла та, каялла та каяйман. Вара чӑваш хӑй юр ӑшне кӑкӑр таран путса асаплансан-асаплансан тин лашипе ҫунине лупашкаран кӑларса ҫул ҫине илсе тухнӑ.

Левентӳк Тихӑнӗ: «Ку япала ахальрен пулман, шӑнкӑравлӑ парпа пыракан вӑл, паллах, Усал пулнӑ, ҫав Усал ӑна шӑнтса вӗлересшӗн пулса, унӑн лашине астарса ҫырмана илсе кайнӑ», — тесе ӗненнӗ.

## 1189

Ӗлӗк осалсем нӑмай полнӑ. Этем ывӑл-хӗрӗнчен мӑшкӑлласа ҫӳренӗ. Пӗррехинче Хветӗр Иванчпа мокача карӑмӑр. Конӗпе ҫӳрерӗмӗр, пӗр мокач та кормарӑмӑр. Каҫ полать, киле таврӑнатпӑр нимсӗрех. Йӗрӗх вар хӗрринче пирн ора патӗнченех пӗр мокач чопса кайрӗ. Хытӑ та чопмаҫ, хуса ҫитмех поҫлатпӑр, ҫапла вара тӗттӗмччен чоптарчӗ пире ҫакскер. Он хыҫҫӑн чопса Йӗрӗх варӗнчен Ирхения* ҫитрӗмӗр. Мокач ҫырмаран хӑпарчӗ те, малти орине ҫӗклерӗ те: «И-хи-хик, Хветӗр Иванч», — терӗ те пӑч ҫухалчӗ. Хамӑр вара ҫохалса кайса ҫӳрерӗмӗр ҫӗрӗпех. Ир енне тин яла пырса кӗтӗмӗр.

## 1190

Пирӗн ялта тахҫан Иванюк пурӑннӑ. Ҫак пӗррехинче кӳршисем патне сӑмахласа ларма каҫнӑ та килне таврӑннӑ чухне хӑйне хыҫран тем хӑваланине сисет. Ҫаврӑнса пӑхать те: Усал! Сехӗрленсе ӳкнипе урисем тӑлланчӗҫ тет, чупма та пултараймастӑп тет. Хашӑлтатса сывла-сывла, урисене аран шутаркаласа пусӑ (ҫӑл) кутне ҫитрӗ тет. Лере шыв тӑкӑнсах тӑнипе талккишӗпех пӑр выртать тет. Хайхи, аран утаканскер хӑйӗн урипе хӑй такӑнса шуса ӳкет те ҫавӑнтах вилсе каять тет.

Ҫавӑнтан вара (Усалӗ ҫав пусса сикнине такам курнӑ тет-и) ҫав пусӑран шыв ӑсма пӑрахнӑ, каярахпа пӑсса тӑпра тултарнӑ, питӗрсех хунӑ. Кам ҫав вырӑнта хӑрать, Усал ересрен ҫӑкӑр е мӗн те пулин кайса пӑрахать.

## 1191

Хӗрсем улах ларнӑ. Тулта шаккани илтӗнет те, хӗрсем тухса уҫаҫҫӗ. Виҫӗ лайӑх тумланнӑ каччӑ кӗреҫҫӗ тет. Хитре пальтосемпе, калпаксемпе. Кӗреҫҫӗ те, хӗрсем вӗсене улах шарикӗ** ҫитереҫҫӗ тет. Кусем шарик ҫиеҫ.

Пӗр хӗрӗн йӗки ӳкет те, вӑл ӑна илес тесе пӗшкӗнет. Пӑхать те: каччӑсен чӗрнисем качака чӗрни пек тет, урисем те качакан пек тет. Хӑраса каять хӗр, анчах ним те каламасть.

Кӑшт тӑрсан ку каччӑсем киле каяс тесе хатӗрленеҫҫӗ. Кил хуҫи хӗрӗ

* Ирхени варне.
** Шарккӑвӗ.

вĕсене ăсатма тухать. Тухсан, кĕт тăхтасан пуртекинче* тăнкăртатни илтĕнет тет. Хĕрсем хăраса каяççĕ. Тухса пăхасшăн пулаççĕ. Леш, йĕке илнĕ чухне усалсен урисене курнăскер калать те, хĕрсем тухмаççĕ.

Çĕрĕпе чĕтресе лараççĕ. Ир пулать, ăсатма тухнă хĕр çаплипех çук. Ирхине тухса пăхаççĕ те — леш хĕрне усалсем çакса вĕлерсе хăварнă тет.

## 1192

Пĕрре хĕрсем мунчана пухăнса ларнă. Çав мунчана каç пулнă чух пĕр старик пырса кĕнĕ. Çав старике каланă: «Мĕн тăвас санпа, вată старикпе, яш ача пулсан пире юратчĕ-ха», — тенĕ. Хай старик каланă: «Юрĕ, сире валли эпĕ яш ачасем ярăп», — тенĕ. Çав старик ахаль çын пулман. Турă пулнă. Вăл старик кайран усалсене яшă каччă туса янă. Каç пулсан çав мунчана яш ачасем пырса кĕнĕ. Кăшт тăхтасан хай ачасем хĕрсемпе выляма тапратнă. Пĕр хĕрĕн çанта йăмăкĕ пулнă. Çав пĕчĕк çылăхсăр хĕре веçех курăннă; çав яш ачасем Усал пулнине вăл курса тăнă. Ун куçне йалт курăннă: яш ачасен кашниннех хÿри, мăйраки пулнă, çăварĕсенчен вут курăннă. Çав йăмăкĕ хăранипе акăшне каланă: «Аки, манăн тула каяс килчĕ», — тенĕ. Акăш ăна тула илсе тухнă. Тула тухсан йăмăкĕ акăшне каланă: «Аки, акам, кашнин хÿри, мăйракисем пур, çăварĕнчен вут курăнать, — тенĕ. — Атя, аки, киле!» — тенĕ. Акăшĕ: «Ий, ухмах, мĕн калаçан, атя часрах кĕр!» — тенĕ. Каллех выляма тапратнă. Кăшт тăхтасан йăмăкĕ каллех акăшне: «Манăн тула каяс килет», — тенĕ. Акăшĕ ятлаçма тапратнă, мĕнле ку пĕрмаях тула йăрккать тесе. Тула тухсан каллех йăмăкĕ акăшне калама тапратнă: «Аки, акам, кашнин хÿри, мăйракисем пур, çăварĕнчен вут курăнать, — тенĕ. — Айта, аки, киле тарар!» — тенĕ. Вара акăшĕ йăмăкĕ сăмахне итленĕ те кайнă.

Ир кайса пăхсан хĕрсенĕн пыршисем анчах çакăнса тăнă. Çав усалсем хĕрсенĕнне кашниннех пыршисене кумса хăварнă.

## 1193

Пĕр каç ашшĕпе амăшĕ кÿршĕ яла хăнана кайма пуçтарăнаççĕ. Хĕрĕпе ывăлĕ киле иккĕшех юлнă. Хĕрĕ асли пулнă май ăна çапла хушса хăварнă:

— Эпир кĕçĕр килейместпĕр, алăксене лайăх питĕрсе выртăр.

Кусем тухса кайсан тепĕртакранах пÿрте ик-виçĕ çамрăк каччă кĕрсе тăраççĕ. Хĕрĕ çакă яшсене палланă май пурне те сĕтел умне кĕртсе лартнă. Шăллĕ темĕнле-çке сĕтел айĕнче хÿресем асăрхать. Çаксем усалсем пулнă. Вĕсем çынсем патне палланă çынсем пек пынă, хĕрсем патне — каччисем пек. Вĕсен хÿрисем хĕрсен куç умне курăнман, акă кунта та шăллĕ кăна асăрхать. Вăл аппăшне вăрттăн каласа парать. Вара хĕр ача вăрттăн тухса кайса автан илсе кĕрсе кăçкăрттарать те, кусем пурте тухса тарса пĕтеççĕ.

## 1194

Чул хулара укçа салатакан Усал пур тет. Çав Усал укçине париччен малтан укçа илме пынă çынсен ачак** пÿрнисенчен касса юн кăларса, хут çине тумлатса, ятсене çырса пĕрене çумне çапать тет те тин укçине

---

* Пÿрт умĕнче, çенĕкре.

** Кача пÿрни.

парать тет. Укçине панă чух: «Сире укçа мĕн тума кирлĕ?» — тесе ыйтать тет. Услам тума тесен памасть тет, чул çурт лартма тесен анчах парать тет. Укçине парса янă чух хăйне хăçан тӳлемелли вăхăтне каласа ярать тет. Тӳлеме хăй каланă вăхăтран пĕр минут кая юлсанах, кам çитейманнийĕн ятне пăхса юнне пăшалпа перет тет те, çав çын вилет тет. Çав укçа кайран урăх çынна тăккалама юрать тет.

## 1195

Ĕлĕк пирĕн ялта пĕр хĕрарăм мунча хутнă тет те пулса çитсен килтисенчен малтан çăвăнма кайнă тет.

Пăхать тет: мунча чулĕ çинче Усал ларать тет. Ăшши пама тăнă хĕрарăмăн аллинчи курки çĕре ӳкнĕ тет, хăй те тăнсăр пулса йăваннă тет. Çакăн хыççăн чи малтан арçынсем кĕме тытăннă тет. Усалĕ арçынтан хăрать пулать. Халĕ те пирĕн таврара çапла: мунчана малтан арçынсем каяççĕ, вĕсем тухсан — хĕрарăмсем.

Астăватăп-ха, пĕчĕк чухне пирĕн патра аттен кукамăшĕ пурăнатчĕ. Ăна мамай тесе чĕнеттĕмĕр. Тăхăр вуннă урлă каçнăскер темĕнле юмах-халап та пĕлетчĕ.

Пĕррехинче мунча кĕретпĕр. Анне мана, пĕчĕкскере, çĕклесе илчĕ те лапка çине хурса милĕкпе çапма пуçларĕ. Мана питĕ вĕри, сывлăш пӳлĕнет, çаптарас килмест. Макăрса ятăм пĕтĕм саспа. Мамай яланхи пекех: «Ан йĕр, ачам, Усал килет те илсе каять ак», — терĕ кантăкран пăхса. Эпĕ Усалтан хăрама вĕреннĕччĕ ĕнтĕ, йĕме чарăнтăм.

## 1196

Йăмăкĕпе аппăшĕ мунча кĕме кайнă тет. Çăвăнма кăна пуçларĕç тет, çав вăхăтра мунчара туй юрри юрлани илтĕнме пуçларĕ тет. Йăмăкĕ хăраса аппăшне тухса тарма йăлăнма пуçларĕ тет. Анчах аппăшĕ килĕшмерĕ тет. «Тепĕртак ларар-ха итлесе, хитре юрлаççĕ вĕт-ха», — тесе калать тет. Йăмăкĕ тухса кайрĕ, асли ларса юлчĕ тет. Килĕнче йăмăкĕ мĕн пулса иртнине ашшĕ-амăшне каласа пачĕ тет. Аппăшне кĕтеç-кĕтеç — килмест тет. Кайса пăхрĕç тет те — хĕрĕн пыршисене кăна пăтасем çине каркаласа хăварнă тет. Вĕсем усалсем пулнă.

## 1197

Пĕр çынсен килĕнче мунча хутнă тет. Çĕнĕ çыннăн мунча кĕме пĕчченех каймалла пулнă тет. Ăна хунямăшĕ мунчара юрлама хушман тет. Юрласан çĕлен пек япала тухать тенĕ тет. Кинĕ мунчана кайсан хунямăшĕ асăрхаттарнине манса шăппăн юрлама пуçлать тет. Сасартăк кăмака чулĕ айĕнчен çĕлен пек чĕр чун тухать тет те çамрăк хĕрарăм тавра яваланса питĕнчен хӳрипе çапса хăварать тет. Вара ун пичĕ çинче кĕсен-çăпан тухса ларнă тет. Çавăнпа халĕ те ваттисем мунчара юрлама хушмаççĕ.

## 1198

Шыври шыва туртса илет. Çын шыва кайсан, шыврисем çакланаççĕ (çыхланаççĕ) ăна шыва кĕнĕ чухне, çавăнпа йывăррăн туйăнса, йывăрланса шыва каять çын теççĕ.

### 1199

Сакайĕнчи вăл пĕчĕк ачасене макăртать теççĕ. Куку хорань лартас полать теççĕ. Ăна ак çапла тăваççĕ: сакайне тăвата кĕтесе валли виçшер, пурĕ вун иккĕ, чустаран пĕчикскерсем тăваççĕ те пӳрне вĕçĕпе шăтараççĕ чашкă евĕрлĕ туса, ăна çатма çинче хытараççĕ те тĕпсакайне кӳртсе кашни кĕтесе виçшер лартаççĕ, вара çапла тусан ачасене хăратмасть теççĕ.

### 1200

Тип çĕрти шыврисемпе те усалтарах теççĕ. Усал ертсе кайнă теççĕ çынна таçталла аташса кайсан. Пĕр-пĕр паллакан çын пулса курăнать тет те чĕнсе е йыхăрса илсе каять тет. Кăçал Иван Петрович тăвата кун çӳрерĕ аташса. Хăй: «Сӳнтĕле илсе кайса теплушкана хупса усрарĕç», — тет. Кайса пăхсан хăйне хупнă вити çук теççĕ. Çавăнта та Шуйттан (е тата Усал) ертсе кайнă теççĕ.

### 1201

Ĕлĕк пĕр хĕрарăм упăшкипе лайăх пурăнман пирки каять тет шыв хĕрне те сикет тет вилес тесе. Çавна çынсем кураççĕ тет. Часрах пулăшма васкаççĕ. Кăна туртса кăларса часрах шывне кăларма пуçлаççĕ тет (ӳпне вырттарса). Çапла çак хĕрарăма çăлса хăвараççĕ тет. Вара упăшки те лайăх пурăна пуçларĕ тет. Анчах хĕрарăм упăшкине яланах пĕр сăмах калать тет: «Мана шыва чĕнеççĕ. Унта пачах та урăхла пурăнăç, савăнăçсем нумай», — тесе калать тет. Вара çак хĕрарăм пĕррехинче чăнах та татах çав пĕвенех сикрĕ тет.

Хайхинче упăшки курса туртса кăларчĕ тет. Вара упăшки чĕлхе маçтăрне Ятман Куçмине илсе килчĕ тет. Ятман Куçмийĕ темĕнле сăмахсем каласа хĕрарăма усалсенчен хăтарчĕ тет. Ватăлса виличченех пĕрне-пĕри юратса, лайăх пурăнчĕç тет арăмĕпе упăшки.

### 1202

Ĕлĕкхи çынсем килте пĕчĕк ачасене пĕччен хăварсан Усал улăштарса каять тенĕ. Усал хăй ачине хурса хăварать тет те сăпкари ачана илсе каять тет. Ачана сăпкана пĕччен хăвармалла пулсан ачи пуç айне хачă хунă. Çĕрĕ хуни те пулкаланă. Тимĕр хурсан Усал пыраймас тет.

### 1203

Пирĕн ялта хăш ват çынсем килти алăк каçалăкĕсем çине тимĕр таканасем çапнă. Кăна вĕсем алăк урлă пӳрте Усал ан каçтăр тесе тунă.

### 1204

Пĕр-пĕр Усал хăвалама тытăнсассăн е утă, е кирек мĕн прахса хăварсассăн Усал çавăнпа ерсе юлать теççĕ.

### 1205

Ку ĕç Кайраклăра пулса иртнĕ тет. Пĕр кĕпер пулнă. Çак кĕпер айĕнче яланах такамсем калаçнă. Пĕррехинче пĕр арçын вĕсем калаçнине итлет. Пĕри калать: «Эпĕ пĕр хĕрарăм патне каятăп (ятне те калать). Вăл вăрмантан

вут турттарса килмелле. Ӑшӗ хыпсан уйран шӗветет. Эпӗ ҫавӑнта ҫӳп пулса кӗретӗп». Тепри калать: «Эпӗ ҫав-ҫав арҫын патне каятӑп».

Хӗрарӑм вут турттарса таврӑнать. Кӗпер тӗлне ҫитсен уйран шӗветсе ӗҫет. Ҫавӑн хыҫҫӑн ку хӗрарӑм чӑн та чирлесе ӳкет. Кӑна темле те сиплеҫҫӗ. Мӗн кӑна ҫитермеҫҫӗ!

Арҫынни те кӗпер патне ҫитсен уйран шӗветет. Анчах ӗҫмест тет. Уйранне пӗр сумкӑна хытӑ хупса пӑрса лартать те ҫакса хурать. Чылай вӑхӑт иртет тет. Сумкӑна илет те уйранне, юлнине, тӑкать. Ҫавӑн хыҫҫӑн каллех кӗпер айне итлеме каять. Пӗри калать: «Ну, рехетлентӗм те. Мӗн кӑна ҫимерӗм-ши. Райри пек пурӑнтӑм вӗт», — тет. Тепри калать: «Каккуй рехетленме, вилӗмрен епле ҫӑлӑнса юлтӑм-ши?»

Ҫавӑн хыҫҫӑн ҫынсем кӗпер ҫине кайса пӑшал пенӗ тет. Ҫавӑнпа кӗпер айӗнче калаҫни илтӗнмест. Усалсем пӑшал сассинчен хӑраҫҫӗ тет.

## 1206

Ӗлӗкрех пӗр арҫын, Ятман Куҫмийӗ, чӗлхе маҫтӑрӗ пурӑннӑ тет. Ҫак ҫын патне таҫтан та килсе ҫӳренӗ тет, такам та пӗлнӗ тет ӑна. Вӑл ҫынна Усалран хӑтарма пӗлнӗ тет.

Пӗррехинче хӑйӗн арӑмӗ те чирлесе кайнӑ. Мӗнле каҫ пулать тет, тӳрех ыйхӑласа ҫывӑрма пуҫлать тет. Вара Ятман Куҫмийӗ арӑмӗ ҫывӑрса кайсан ҫитар* айне ҫӗҫӗ чиксе хучӗ тет. Ҫав ҫӗҫӗ чӑт ҫӳп шӑтӑкне вӑркӑнчӗ тет. Хайхи Ятман Куҫмийӗ ӑнланса илчӗ тет арӑмне Усал ернине. Вара вӑл пӗр ҫынна каланӑ: «Эс Усал ҫук тен, пыр кӗҫӗр пирӗн пата. Пӑшалпах пыр», — терӗ тет те кайрӗ тет. Чӑнах та, ку арҫынни пӑшал авӑрласах пычӗ тет. Кӑштах ларчӗҫ тет те, сакайӗнче хӑлтӑрчӑ ташла пуҫларӗ тет. Ак ку ҫавӑнталла пӑшалпа печӗ тет. Усалӗ каялла трст! тутарса печӗ тет. Пӳртре тӗтӗм-сӗрӗм пӑсӑрланать тет. Кун хыҫҫӑн шӑпах пулчӗ тет.

Ятман Куҫмин арӑмӗ кӑшкӑрса вӑранса кайрӗ тет: «Тӗлӗк куртӑм. Пӗр ача шушкӑ ҫитересшӗн мана. Эп ҫимерӗм те, питӗ хытӑ чӑмӑртаса илчӗ мана хӑй патне, сывлӑш та тухми пулчӗ. Аран вӑранса кайрӑм», — терӗ тет.

Нумай ҫынна Усалран хӑтарнӑ тет ҫак Ятман Куҫмийӗ.

## 1207

Иккӗн, пӗртӑванскерсем, яланах ухутара ҫӳренӗ. Пӗрре, каҫ пулсан, кусем вутӑ хунӑ та ҫывӑрма шухӑшланӑ. Кӗҫӗнни, шӑллӗ, пиччӗшне калать: «Вӑт ҫакӑнта пире пӗр хӗр пулсан!»

Пиччӗшӗ кӑна ятланӑ. Унччен те пулмарӗ, килет кусем патне пӗр чипер хӗр, хӑй шурӑ сӑхманпа, пилӗкне кӑвак пиҫиххи ҫыхнӑ, хӑй калать: «Ай, спасип сире вут хунӑшӑн, эпӗ ҫӗтсе кайсаттӑмччӗ, халь тин ӑш лӑпланчӗ, — тет. Тата калать: — Эпӗ пӗччен хӑратӑп ҫывӑрма, тавай, пичей, иккӗн ҫывӑрӑпӑр», — тет.

Аслӑ ачи кӗҫӗннине хӗрпе ҫывӑрасран чарчӗ те, хӑй ҫумне илчӗ те каларӗ: «Эпир ӗшеннӗ ҫынсем, пире хӗр-мӗн кирлӗ мар, эсӗ вырт вӑн леш енне, эпир — ку енне», — тет.

* Ҫытар, минтер.

Вара выртрĕç: ачасем пĕр енне, хĕрĕ тепĕр енне. Вут хытă шарласа çунать. Кĕçĕнни çывăрса кайрĕ. Аслă ывăлĕ пăхса выртать. Хай хĕр çăварĕнчен чĕлхине кăларса тек кармашать кусем еннелле, пĕрре вут урлă ярать, тепре вут йĕри-тавра ярать — ниепле те çитерейместь. Вара çак аслă ывăлĕ пăшал илчĕ те янлаттарчĕ хайхи хĕре çăварĕнчен. Лешĕ сиксе тăчĕ те тепĕр хут кайса ӳкрĕ, тата тăчĕ те кайрĕ вăрмана çĕмĕрттерсе. Ир тăрсан ухутниксем кайрĕç тет ăна йĕрлесе. Кайсан-кайсан тупрĕç тет пĕр шăтăк. Çав шăтăкра туллиех тет усалсем. Вара кусем вут тултарса çунтарса янă усалсене. Ĕлĕк ухутниксем пĕтерсе çӳренĕ усалсене.

## 1208

Ял халăхĕ уйра пулнă: ыраш вырнă. Çанталăк уяр пулнă. Мал енче кăвак пĕлĕте хупласа çумăр пĕлĕчĕ тухнă. Вăл ерипен кай еннелле шăвнă, çывăхри ял патнелле çывхарнă. Çав пĕлĕтрен аслати сасси илтĕне пуçланă.

Ялăн пĕр урамĕнче, пĕр пӳртре, карчăк ларнă: вăл ватă пирки тырă вырайман, çавăнпа киле юлнă. Вăл чӳречерен урамалла пăхнă та урам тăрăх чупса пыракан пĕр ют йытта курнă. Кĕç карчăк умĕнче йытă куçран çухалнă, ун вырăнне темскерле çӳçĕсене тăпкаланă, кĕпине йӳле янă хуп-хура хĕр пулса тăнă. Çав хĕр карчăка курса ун патне чупса пыма шутлани палăрнă. Карчăк хăранипе: «Турă, çырлахсам», — тенĕ те сăхсăхса илнĕ. Хура хĕр вара карчăк патне кĕмен, васкаса урампа аналла чупса кайнă. Вăл пĕр киле, унтан тепĕр киле кĕме хăтланнă, анчах кĕмен. Карчăк çавна лайăх курнă, мĕншĕн тесен вăл урамах тухса çав хĕре ăçта кайнине пăхса тăнă. Хĕр Мĕтри ятлă хресченĕн кил картине кĕрсе кайсанах пысăк çиçĕм йăлтăрт туса илнĕ те, аслати шăтăртаттарса хытă çапнă. Карчăк хăраса пӳртне тарса кĕнĕ. Кăшт тăрсан пушар чанĕ тон-тон-тон! тутарса çапма тытăннă. Карчăк каллех урама чупса тухнă та Мĕтри килĕ тĕлĕнче тĕтĕм тухнине курнă. Карчăк шыв тултарнă витре илсе Мĕтри пӳрчĕ патне чупнă. Унта ĕнтĕ виçĕ-тăватă çын пулнă. Вĕсем вутне сӳнтерме тăрăшнă. Çуннă Мĕтрийĕн витипе сарайĕ. Паллах пулнă аçа çав вырăна çапни. Çынсем уйран чупса килнĕ, кил хуçисем те таврăннă. Вĕсем ампартан тата пӳртрен япала кăларма васканă. Вутне сӳнтерекенсем питех тăрăшман та сӳнтерме. Хăш-пĕрисем каланă: «Вутне Турă кăларнă, çавăнпа вăл вутта сӳнтерни Турра хирĕç пыни пулать».

Карчăк хăй мĕн курнине каласа кăтартнă. Юлашкинчен вăл каланă: «Паллах, малтан йытă, кайран хĕр сăнне илекенни вăл Усал пулнă. Турă ăна хăваланă, вăл Турăран тарса пытанма хăтланнă. Ăнсăртран вăл пирĕн урама лекнĕ те Мĕтри витине кĕрсе пытаннă. Анчах Турă вăл ăçта пытаннине курсан ăна вутлă чулпа пенĕ. Çав чулран Мĕтрин витипе сарайне вут тивнĕ. Акă мĕн пирки çак пушар!»

Ытти ял çыннисенчен нумайăшĕ карчăк каланипе килĕшнĕ. Икĕ кил çунса кайнă вара çавăн чух.

## 1209

Ĕлĕк арăмĕпе упăшки ĕçке кайнă тет, çĕр выртмалла. Хĕрĕ вĕсене ăсатма тухнă тет те кĕпер урлах каçарса янă тет. Хай пуçне усса килелле таврăнать тет.

— Ман кампа ҫывӑрас-ши, ман кампа ҫывӑрас-ши? — тесе пырать тет.

— Хам пырам, хам пырам, ылтӑн арча ис пырам, кӗмӗл арча ис пырам, — тесе калать тет такам кӗпер айӗнчен.

— Пырӑсӑн та пырах, пырӑсӑн та пырах, — тесе калать тет хӗр ача.

Хайхи хӗр киле ҫитрӗ тет те ку Усалтан мӗнле хӑтӑлмалли ҫинчен шутлама пуҫларӗ тет. Автан тытса кӗчӗ тет те кӑмака ҫине юшка патне хӑпартса лартрӗ тет.

Каҫ пулсан алӑка такам шаккарӗ тет. Пӳрте мӑйракаллӑ, ҫӑмлӑ Усал кӗрсе тӑчӗ тет. Пӗр аллинче ылтӑн арча, тепӗр аллинче кӗмӗл арча тет. Хӗр ача автана хӳринчен туртрӗ тет те, автанӗ: «Ку-ка-ре-ку!» — тесе авӑтса ячӗ тет. Усал хӑранипе арчисене пӑрахсах пӳртрен тухса тарчӗ тет. Хӗр ача пӗр арчине уҫса пӑхать тет – ылтӑн туллиех тет, тепӗр арчине уҫса пӑхать тет — кӗмӗл туллиех тет. Ирпе хӗрӗн ашшӗпе амӑшӗ хӑнаран таврӑнчӗҫ тет, пӳрт тулли ылтӑнпа кӗмӗл тет. Ҫапла пуйса кайрӗҫ тет вӗсем.

## 1210

Пӗр ҫын ухатана кайсан аташса кайнӑ та хурӑн кутне выртнӑ. Ку выртсанах тытӑнчӗҫ тет пӗтӗм вӑрмантан усалсем ҫухӑрса кун патне пухӑнса кӑна хӑратма. Кун тӗлӗнчи Хурӑн каллӗ-маллӗ авӑнса, усалсене хӑвалама авкалансан-авкалансан каларӗ тет: «Эх, пилӗкӗм ыратать, пилӗкӗм ыратать, пилӗкӗм ыратмасан ку усалсене пӗтӗмпе амантса пӗтерӗттӗм», — тесе. Хай ухатара ҫӳрекен ҫын тӑрсан хурӑна пӑхнӑ та, пуртӑ лартнӑ хурӑн пулнӑ тет.

Ӑвӑс та Усала ямасӑр калать: «Ман кутне выртсан ҫулҫӑсене суса кӑлар, вара парӑп», — тесе калать тет. Усал сума тытӑнсан ӑвӑсӗ ҫулҫисене вылянтарать тет, вара Усалӗ суса кӑлараймасӑр аптӑраса пӑрахсах каять тет.

Пӗрре ҫапла ҫак ҫын ҫамрӑк юман кутне выртнӑ та пайтах выртсан вӑраннӑ тет те, йывӑҫӗ ҫапла: «Атя, асатте вилет», — тесе каласа йыхӑрчӗ тет тепӗр ҫамрӑк юманне. Пайтах вӑхӑт иртсен пӗр йывӑҫ шатӑртатса хуҫӑлса анчӗ тет. Ку ирхине тӑрсан пӑхнӑ та, ват юман хуҫӑлса ӳкнӗ тет.

## 1211

Ӗлӗк пӗрре ҫапла хӑнана кайса лашапа. Каҫ поласпа Макҫӑмпа каялла киле килме тохрӑмӑр хайхи. Перн хайхи каҫ та полса карӗ. Килетпӗр ҫапла ҫол тӑрӑх халтӑртаттарса. Пӑхатпӑр ҫол ҫине — йоман выртать. Но, кӑна халь илсе пӑрахрӑмӑр ҫол айккинелле. Кайсан-кайсан каллех ҫол ҫинче йоман пӗрене. Кона татах илсе пӑрахрӑмӑр. Каятпӑр та, каллех ҫол ҫинче йоман касса пӑрахнӑ.

— Э-е, ку Усал ачи-иҫ, — терӗ пирӗн Макҫӑм. Вара ҫӗҫӗпе йомана хӗреслесе касрӗ. Ун ҫине вара тӑвар хорчӗ. Ҫав кайрӗ Йоман ахӑрса: «Турӑн, Макҫӑм! Турӑн, Макҫӑм!» — тесе кӑшкӑрса вӑрмана ҫӗмӗрсе кӗрсе кайрӗ.

## 1212

Усал каҫхине ҫынна хӑратса ҫӳрет. Килте пукансем куҫаҫҫӗ, урай шатӑртатать, ҫын утнӑ пек туйӑнать, алӑксем хӑйсем тӗллӗн уҫӑлса хупӑнаҫҫӗ. Ҫывӑрма выртсан вырӑн пуҫӗнче шаккаса ҫӳрет.

«Вĕри кĕл сапап!» — тесе каласан хăрать вăл. Вара ĕлĕк вырăн пуçне вĕри кĕл сапса выртатчĕç.

Çын вилсен унăн усал сывлăшĕ çын пек пулса хăратса çӳрет. Шурă е хура тум тăхăнса киле кĕреççĕ.

## 1213

Пирĕн ялтан инçех мар вăрман пур. Вăл пит илемлĕ. Ăна çынсем ан касчăр тесе турăшсемпе çаврăннă (касмастпăр тесе Турра сăмах панă). Эпĕ пĕчĕкрех чухне ун çинчен ак çапла калаçатчĕç. Унта ик Усал пурăннă тет. Турăшсемпе çаврăннă чух пĕри вăрманăн тул енне юлнă тет, тепри шала. Кайран вĕсем пĕрле хутшăнас тесе темĕн тĕрлĕ тăрăшатчĕç тет, анчах ниепле те пĕрлешейместчĕç тет. Тул енчи тул енчен кăшкăрса пыратчĕ тет, шал енчи шал енчен, анчах карта патне çитсен малалла каяймастчĕç тет. Вĕсем кăшкăрнине ачасем нумай илтнĕ тет.

## 1214

Тата вăрманта хушпуллă арăмсем ташланине нумайăшĕ илтнĕ теççĕ.

Пирĕн ялтан инçех мар, пĕр пилĕк çухрăм пулĕ, хысна вăрманĕ пур, ăна Хыçалти вăрман теççĕ. Çав вăрманта та Усал пур теççĕ. Пĕрре пирĕн хресна атте юлташĕпе çав вăрманта выртнă. Каçхине, сĕм тĕттĕм пулсан темĕскер: «Эсир ăçта?!» — тесе кăшкăрса пырать тет. Малтан кăшкăрнă сасси хуллен илтĕнетчĕ тет. Унтан хытă кăшкăрнăçемĕн хытă кăшкăрса çывхара пуçларĕ тет. Унтан çывăхах пычĕ тет. Вара хресна атте: «Эпир Турă çыннисем, кунта ан кил», — тесе каларĕ тет те, вара Усал каялла кăшкăрса кайрĕ тет.

## 1215

Эпир пĕрре çуркунне катана сертене кайрăмăр. Серте татса шалалла кĕтĕмĕр те, йытă сасси илтĕнчĕ пек туйăнчĕ. Эпĕ юлташсене: «Лат мар ĕнтĕ, айтăр каялла», — терĕм. Эпир çаврăнса каялла каяс тесе тăраттăмăрччĕ, çав вăхăтра çын сасси илтĕнчĕ.

Эпир унталла пăхрăмăр та — йывăç хушшисемпе пĕр кĕçĕн çын курăнчĕ. Çав кĕçĕн çын пирĕн патралла пăхрĕ те: «Унта серте нумай-и? – терĕ. Пирĕн юлташран пĕри: «Нумай мар», — терĕ. Кĕçĕн çын: «Эсир кам ачисем?» — тесе ыйтрĕ. Ман юлташ первый шухăшламасăрах пĕтĕмпех каласа кăтартрĕ. Ăна каласа пĕтерчĕ те, кĕçĕн çын куçран çухалчĕ. Эпĕ ачасене вăрмантан илсе тухрăм та йĕркипе каласа кăтартрăм. Эпĕ вĕсене вăл Усал пулчĕ пуль: молитвă вуларăм та, куçран çухалчĕ терĕм. Çав вырăнтах, эпĕ аттесем юмахланине илтнĕ, ĕлĕк пĕр хĕре качча илсе кайнă чухне лаша çинчен ӳксе вилнĕ тетчĕç. Вăл кĕçĕн çын хушпупа, çĕн кĕпесемпе, пошмаксемпеччĕ. Вăл тĕл-тĕлпе пĕрмаях урăх çынсене курăннине те калатчĕç.

## 1216

Пĕрре, çамрăк чух, çырла пуçтарма кайса. Тăрăн карти варĕ тăрăх çырла пуçтарса çӳретĕп. Кăнтăр тĕлĕ лăпах çитнĕ. Хам пĕчченех çӳретĕп. Çапла çырла шыракаласа çӳренĕ чух хамăр пускилсен хĕр ачи Кĕтерне, сис-

мерĕм те, пычĕ тăчĕ. «Атя çанталла, — тет, — çанталла çырла шутсăр нумай», — тет. Кĕтерне çине пăхрăм та, чун хăрах кайрĕ. Каятăп хайхискер хыççăн. Утса пынă чух ура шуçнă пек туйăнчĕ те: «Ах, Турă, çырлах», — терĕм. Кайран Кĕтерне таçта кайса кĕчĕ. Хам тарăн шырлан хĕрринче тăратăп, пĕрре ярса пуссанах шырлана ӳксе вилмелле. Çакăнтан кайран, çырлу-япалу, кăнтăр тĕлĕнче Турă ан ятăр пĕччен çӳреме.

## 1217

Пĕрре çапла анкартине пĕр çăмăлпа тухрăм. Каялла килнĕ чух тем пулчĕ, улăм купи айĕнчен темскер чупса тухрĕ. Эпĕ утатăп-утатăп, анчах малалла каяймастăп, чупма хăтланатăп, чупаймастăп. «Эй, Турă, çырлах», — тесе сăхсăхрăм та, çав йăлтăр-йăлтăр çутăскер куç умĕнчен аран-аран çухалчĕ. Çавăнтанпа каç пулсан анкарти таврашне тухмастăп.

## 1218

Эпĕ клубран таврăнма пĕччен таврăнтăм. Кĕçти çырма — йывăçлă, тĕттĕм. Çапла эпĕ хамăр пӳрт патне çитмех тытăннăччĕ. Ман умма темле хура япала сиксе тухрĕ. Хăй йытăран пĕчĕккĕ, пуçĕ вăкăрăнни пек, чупнă чухне лаша пек чупать. Ман умма сике-сике тухать. Пĕр хапхаран кĕрсе каять те тепĕр çын хапхинчен сиксе тухса ман умма тăрать. Хăра-хăра кил патнелле çывхартăм. Юлашкинчен ним тума аптăранипе виçĕ хут сăхсăхрăм. Вара куç умĕнчен çухалчĕ.

Чăнах та, пирĕн касра питĕ хăратать. Çынсем хăйсем курнине каласа паратчĕç. Анчах та тĕплĕн никам та каламасть мĕншĕн хăратнине.

## 1219

Ĕлĕк кокаçпа кокам кайри хорăнташа кайнă (кокамсен ялне). Вăсам лашапа полнă. Онтан таврăннă чохне вĕсем омĕнче хоп-хора вăрман лаши чарăннă тет. Хăваласан та ниçталла та отмасть тет. Вара кокаç çона çинчен сиксе анчĕ тет те лаша поçĕ çине хĕрес хочĕ тет. Олăм пĕрчĕкне ик айккинелле татса печĕ тет. Вара лаша карлаттарса чопма тытăнчĕ тет. Омра нимле вăрман та çок тет.

## 1220

Пирĕн ялтах пĕр çыннăн çăварни чохне, ĕçкĕрен килне таврăннă чох çырма орлă çĕр монча панчен иртсе каймалла полнă тет. Çав монча патне çитерехпе пĕр майра çак çынна холĕнчен тытрĕ тет те: «Айта ман пата сăра ĕçме», — тесе çавăтса карĕ тет. Чиперех пĕр пӳрте исе кĕчĕ тет те, пӳртĕнче краçин çути çап-çут тет. Унтан çакна пĕр корка сăра пачĕ тет те, ко ĕçем тесе сăхсăхрĕ тет. Корка та мар, алра чол тытса тăра парап тет. Ăнтан: «Эй, Торă, çырлах», — тесе тепре сăхсăхрăм тет те, осалсем ахăл-ахăл! колчĕç ячĕç тет. Кайран ни краçин çути çок, лайăхрах пăхап та — пӳртре мар, çĕр мунчара тăрап тесе калать тет. Вара Торра асăнса тохса киле таврăнтăм тесе калать тет.

## Усал-тĕселпе чĕмересем: Ăншăрт, Каçăхи, Кăрмасан, Мур, Ниш, Сив, Типери, Тӳм-тӳм, Хытăм, Чăкарми, Шатăн

*Чĕмере йышши усал-тĕсел ушкăнĕ пысăк. Юмăççемпе чĕлхеççем хăйсем ăнлантарайман чирсене усал вăйсем, ийе-чĕмересем çине сулнă. Чир-чĕр тĕселĕсем ыр-хаярсен е тата тепĕр чухне турăсен шутнех кĕнĕ. Ахăртнех, сĕм аваллăхра чăваш вĕсен хăватне пысăка хунă, çавăнпа чăнласа чӳкленĕ, парнесем панă, ятарласа сăра, апат-çимĕç пĕçерсе, тăвансене пухса хăналанă.*

*Этемлĕх авалхи айван шухăшлавран тахçанах тухнă пулин те, чăваш ялĕсенче чир-чĕр чĕмерисене йăпатасси XIX ĕмĕр вĕçĕченех тытăнса тăнă.*

*Вушни, Ĕревĕш, Кĕлилен, Пăсăркка, Ӳлемер, Юлавăш тата ытти усалтĕселе кĕскен палăртса хăварнисем архив материалĕсенче нумай. Вĕсен ячĕсем тĕшмĕш, чĕлхе, калмак сăмахлăхĕнче упранса юлнă.*

### Ăншăрт

#### 1221

Ăншăрт — Хаяр турă. Ăншăрт çын çине ӳкет. Çынсем пĕр-пĕринпе хытă вăрçсан, çавсен хушшинче тепĕр çын пулсан, ăна ăншăрт ӳкет. Вăл çын чирлет: е пуçĕ ыратать, е шăлĕ шыçса тухать.

Ăншăрта йывăç кăмпипе тĕтĕреççĕ. Ăншăрта кăмакари кĕлпе те тасатаççĕ. Çыннăн пуçĕ тăрне тытса хĕвеле май çавăраççĕ. Çакăн пек сăмахсем калаççĕ: усал куçпа пăхнă пулсан та, хаяр куçпа пăхнă пулсан та, ăншăрт, тух! Картишне тухаççĕ те хапхана хирĕç тăрса кĕле урамалла сапаççĕ.

Ăншăрт ӳкнĕ пулсан тата сĕтел кĕтессине чӳхесе, алăк хăлăпĕсене чӳхесе, карта урлă сапаççĕ. Ăншăрт ӳкнĕ çынна тата урай çӳппине шăлса тасаттараççĕ.

#### 1222

Виле ăншăрчĕ виле çинче вăрçсан тепĕр çынна лекет. Виле ăншăрчĕ, ахаль ăншăрт пекех, асаплантарать çынна. Виле ăншăрчĕ ӳксен çынна чĕртме май çук теççĕ.

### Каçăхи

#### 1223

Каçăхтарса яракан чире каçăхи тенĕ. Ыр-хаяр пĕлтерĕшлĕ çав чир çынна е варсăр, е чикен чикекен тăвать. Чиртен сыватма — тиха е пăру, хытăрах ыратать е чикет пулсан хăш чухне лаша касса пăрахнă, çавна «Каçăхи касатпăр» тенĕ.

#### 1224

Авалхи çынсем каçăхтарса яракан чире каçăхи тенĕ. Çав чир çынна е сасартăк варсăр тăвать, е чикекен пулать. Чикен тапратсан каçăхи тесе, уншăн пĕр çут, кайса пуянсем е тиха, е пăру, тата хытăрах ыратать е чикет пулсан хăш чухне лаша касса пăрахнă, çавна вĕсем «каçăхи касатпăр» тенĕ. Касса пăрахсан тӳрленнĕ е кайран пурăнма та аван пулнă тесе шухăшланă авалхи çынсем.

## Кăрмасан (мул чирĕсем)

### 1225

Чăвашсем çĕре пытарса хунă мулсем çинчен нумай калаçаççĕ. Вăл мулсене ĕлĕк вăрă-хурахсем е пуян çынсем çĕре алтса сăра хуранĕсемпе, е сăра чӳлмекĕсемпе, е кăкшăмсемпе лартнă теççĕ. Çав мулсем çумне Усал вăрăнса вĕсем халĕ ийеленсе кайнă теççĕ, çавăнпа вĕсене алтса илме питĕ хĕн тет. Чун памасан мул темĕн тĕрлĕ алтсан та уçăлмасть тет, аялалла шанкăртатса анса каять тет. Чун памасăр мула кăларсан кайран питĕ хĕн тет. Ĕлĕк пĕри çапла чун памасăрах тепле мул алтса илнĕ. Ку питĕ пуйса кайнă, анчах мул алтса кăларнăранпа пĕр çĕр те лăпкă çывăрайман. Кăна çĕрĕ-çĕрĕпе ялан: чун пар тесе аптратнă. Çын нимĕн тума аптăранă: ачисене парас килмест, вара ку кушак тытать те мул кăларнă вырăн патне кайса пусать тет. Çавăнтан кайран тин çын лăпкă çывăракан пулнă тет.

Мул тĕттĕм çĕрсенче мĕлт-мĕлт çунать тет. Вăл вут аякран анчах курăнать тет, патне пырсан çухалать тет. Хăшĕ: мул çĕрлесенче шурă йытă пек пулса телей уçăлнă çынна курăнать теççĕ. Çав йытта туяпа е мĕнпе те пулин çапсан пĕр купа укçа пулса тăрать тет. Мул çын чунне парсан уçăлать тет, тата кăвак лаша чунĕ те паха тет.

### 1226

Мул Мункун кунĕ уçăлать тет. Пĕр çын калăм кун хĕвел тухнă вăхăтра вăлта хыптарма Сĕве хĕрне кайнă тет. Ку çын айккипе пынă чух ту айккинче тимĕр хапха курать. Çав хапха патне çывхарсан хапха икĕ еннелле уçăлса каять тет. Хапхан икĕ енче сăнчăрта икĕ упа кăкарăнса тăнă, шăтăкра пĕр майра чăлха çыхса ларнă, шăтăк тулли укçа пулнă. Майра пулăçа: «Кĕр те кăмăлу килнĕ таран укçа илсе тух», — тенĕ. Пулăçă хăранă, вăл часрах яла чупса кайса çынсене мул курни çинчен, майра мĕн калани çинчен каласа кăтартнă. Ял-йышсем пулăçа каланă: «Халь те эсĕ шăтăка кĕмен, эсĕ шăтăка мул илме кĕрсенех хапхасем хупăннă пулĕччĕç те, эсĕ шăтăках юлнă пулăттăн», — тенĕ.

### 1227

Мул ийийисем этеме хĕн те кăтартаççĕ тет. Пĕр ялта çарана ача-пăчасем лашасем çитерме кайнă. Пĕр ача юлташсенчен уйрăмрах кайса авантарах курăк çине ана хĕррипе çитерсе çӳренĕ. Акă ачасем кăнтăрла çитсен лашасене шăварма тесе киле каяççĕ. Уйрăм çӳрекен ача та киле каяс тесе лашисене тытать. Унтан утланас тесе хăйĕнчен инçе мар тĕме патне лашисене çавăтса пырать. Тĕме çине пуссанах тĕме путса анса каять, унччен те пулмасть — ача шăнкăр-шанкăр шăтăка анса каять. Унтан тĕренкелесе шăтăкран тухать те аяллалла шăтăк тĕпне пăхать. Шăтăкра хуранĕ-хуранĕпе укçа тет. Унччен те пулмасть — хай ачана темскер пуçран çапса çĕре çĕклесе пăрахать. Ача вара ăнсăр пулса темĕнччен выртать. Ăн кĕрсен хай ача унта-кунта пăхкаламасăр лаши çине часрах утланать те киле чуптара парать. Ача картишне кĕрсенех татах темскер çапса антăрататать. Çакăнтан вара кайран ача хытă хăлхаллă пулнă.

## 1228

Пирĕн ялăн вĕçĕнче питĕ пысăк тĕме пур. Çавăн çинчен мана ваттисем çапла каласа панăччĕ. Унта ĕлĕк пĕр пуян çын укçа пытарнă пулнă тет. Пирĕн асатте те калатчĕ: çав тĕме çинчен ялан вут пек сутă япала тухса выляса кĕретчĕ тет вара. Çавă имĕш укçи шуйттанланнă та выляма тухнă тетчĕ.

## 1229

Пирĕн пĕр лупашка пур, варринче пĕр ту. Вăл тăва Укçа тĕмески теççĕ. Ĕлĕк пĕр улпут укçине çавăнта пытарса хунă теççĕ. Çав ту çине выртса итлесен таçта çĕр айĕнче тупă пенĕ пек кĕмсĕртетни илтĕнет теççĕ, анчах хам итлесе пăхман. Хăçан çумăр çумалла, ун чухне вăл аслати авăтнă пек кĕрĕлтетсе каять теççĕ. Ăна халь те калаççĕ ваттисем.

## 1230

Авалхи çынсем укçана çĕр айне варнă тет вăрăсенчен хăраса, кайран вара хăшĕ хăй укçине хăй те илеймен тет. Пытарнă укçана Усал йышăннă пулать вара, ăна никама та памаççĕ усалсем. Çавă укçасем халĕ çунаççĕ кĕшерни каç, калăм каç. Симĕсĕн-кăвакăн çунать вара уйра, кăçта çут вĕçсенче, кăçта сăрт тăрринче çунать. Хăшĕ-хăшĕ çав укçана илесшĕн каяççĕ çĕр хута. Çавăн патне çитерехпе куçран çухалать тет.

## 1231

Çимĕк каç вут курăнать теççĕ укçа хурса хăварнă çĕрте. Ăна çапла тухать теççĕ: пăру-путек, кушак, хур аçи, автан пулса. Çумра тимĕр пулсан, тимĕрпе персен шанкăр! саланса каять теççĕ. Унтан вара хутаçпа тултар та ил, урăх çынна кăтартма юрамасть, каллех çухалать теççĕ.

## 1232

Степан Разин кунталла та çӳренĕ. Унтан хăраса укçасене çĕр айне пытарнă. Çав укçасен тĕлĕнче халĕ мункун каç, тройца каç вут тухса тăрать теççĕ. Авал вăрă-хурахсем укçа вăрлама килсен кутсене ĕнте-ĕнте укçисене илнĕ тет.

## 1233

Çимĕк каç çĕрти Пукай хунă укçа, ахаль хунă укçасем çунаççĕ тет. Тутăхнă укçасене Усал çунтарса тасатать тет, çутатать тет. Хăш укçана выльăх тирĕпе хунă, çав выльăх пулса çӳрет тет. Çав укçана илес тесен — çунакан вырăна е выльăха курсан ăна тимĕр татăкĕпе пемелле тет. Вара укçа саланса çĕре тăкăнать тет.

## 1234

Аслă Таяпапа Кĕçĕн Таяпа хушшинче хула текен вырăн пур. Çак хула пирки ватă çынсем çапла калаççĕ. Ĕлĕк вăрçă вăхăтĕнче çавăнта çĕр пухăнса тăнă, салтаксем ăна аркăпа, хутаçпа çĕр йăтса купаласа тунă теççĕ. Çав

хулан тăвать кĕтессине те пичкепе укçа чикнĕ теççĕ. Вĕсене салтаксем хурал тăрса сыхланă пулать. Çав укçа хăш чухне е качака пек, е путек пек пулса чупса çӳрет тет. Çырма шывĕ юхтарнипе хулан пĕр кĕтесси чылай ишĕлнĕ. Çавăнтанпа мăнкун касĕсенче укçа çунать теççĕ. Çав хула варринче пăхăртан тунă сăнăсем тупкаланă.

## 1235

Пĕрре авалтарах Вăтаелĕнчи пĕр Кирӳшке ятлă çын Аслă тăвайккире пысăк чукăн чӳлмекпе пăхăрпа кĕмĕл укçа ларнине курнă тет. Укçана илсе каяс тесе чукăн чӳлмеке çĕклерĕ тет те çавăнтах суккăр пулса ларчĕ тет, нимĕн те курмасть тет. Укçа чӳлмекне калла хăй вырăнне лартрĕ тет те вара куракан пулчĕ тет. Темиçе хут илсе кайма тăрсан та ялан суккăр пулса тăчĕ тет. Çав укçа ларакан вырăна çăнăх е кĕл сапса хăвармалла тет. Тепĕр кунне кĕл çинче лаша йĕрри пулсан Шуйттана лаша пусса парне памалла тет. Çав вырăнта çын йĕрри пулнă тет те, Кирӳшке çын вĕлерсе çылăха кĕресшĕн пулман тет. Халĕ унтан кайран çуннине курсан та тĕл вырăннех тупмалла мар тет. Укçана Шуйттан вăхăчĕ-вăхăчĕпе типĕтет тет, çав типĕтнĕ чух вут çулăмĕ курăнать тет.

## 1236

Эткер ятлă ялта, Каçал вулăсĕнче, Çĕрпӳ уесĕнче çĕре пытарнă укçа пур теççĕ. Çав клад Хăнтăрла ятлă çырма хĕрринче, тарăн шырлан тĕлĕнче. Çавăнта клад пуррине мĕн те пулсан курăннинчен пĕлнĕ: хăш чухне хĕрлĕ ĕне пек, хăш чухне япала çуннă пек курăннă е урăх тĕрлĕ япаласем пек курăннă.

Çав клада пурте тупасшăн пулнă, анчах никам та майне пĕлмен. Пĕр çын клад шыраса çав вырăна нумай чавнă, анчах темĕн чухлĕ чавсан та нимĕн те тупман, çав шăтăк халĕ те паллă тăрать.

70 çул маларах çав ялсемех, пĕр вырăс, Хусантан ăста илсе килнĕ. Ăста кил хуçине клад шыраса тĕлĕнчен вакă касса шыв ăсса килме хушнă, ку ĕç хĕлле пулнă. «Пĕр-пĕр япала хăратсан эсĕ ан хăра, пĕр-пĕр çын чĕнекен пулĕ, эсĕ ăна хирĕç ним те ан чĕн, каялла та çаврăнса ан пăх», — тенĕ. Çав вырăн ялтан инçе мар, пĕр 300 хăлаçра анчах, унта хăвалăх витĕр каймалла пулнă. Шыв ăсса килнĕ чух сасартăк кутсăр-пуççăр тăман тухнă, куçран тĕртсен те курăнман. Такам унăн уринчи йĕлтĕрĕсене тапа-тапа кăларса янă, пĕрне пĕр çĕрелле, тепĕрне тепĕр çĕрелле, вара йĕлтĕрсĕрех тăрса юлнă; юр пит тарăн пулнă, йĕлтĕрсĕр ниçта кайма та пулман. Вăл хăравçă çын пулман, шыв ăснă савăта çавах аллинчен пăрахман. Вара вăл кĕлĕ вуланă: «Турă тăтăр, унăн тăшманĕсем саланса пĕтчĕр...» (вăл çав кĕлле лайăх пĕлнĕ). Çав кĕлле вуласанах тăман сасартăк чарăннă. Вара йĕлтĕрсене шыраса тупнă та киле таврăннă. Маçтăр çавăнтан ăсса килнĕ шыв çине пăхнă та клад пуррине пĕлнĕ. Вара вăл каланă: «Кунта клад пур, анчах илме пит хĕн, мĕн пурĕ вун икĕ çын парас пулать», — тенĕ. Çавна илтсен хуçи клада илесшĕнех пулман, мĕншĕн тесен вăл çылăхран хăранă. Ăсти каланă: «Вун икĕ çын вырăнне пĕр çынпа та ирттерсе яма юрать, пĕр çын та памасан юрамасть», — тенĕ. Вара ăсти хуçине вун икĕ çын вырăнне вун пĕр вăта юпа паратăп тата хам пуça паратăп тесе калакан çын тупма хушнă. Хуçи çапла каласан килĕштернĕ. Вăл пĕр

хӑлхасӑр, айван ҫын тупса пынӑ. Вара ҫав айван ҫынна сана нумай укҫа парӑпӑр тесе: «Эпӗ сана вун икӗ ҫын вырӑнне вун пӗр вӑта юпа паратӑп тата хам пуҫа паратӑп», — тесе калама вӗрентнӗ. Хай ҫын, уна-куна шухӑшлама пӗлменскер, вун пӗр вӑта юпа илнӗ те ҫӗрле ҫав клад ҫывӑхне кайса лартнӑ. Вӑл акӑ ҫапла каласа лартнӑ: «Вун ик ҫын вырӑнне вун пӗр вӑта юпа паратӑп тата хам пуҫа паратӑп», — тенӗ. Лартса таврӑнсан ӑста тата виҫӗ-тӑватӑ ҫын тупма хушнӑ, вӗсем ҫӗр чавма кирлӗ пулнӑ. Вӑл вӗсене акӑ ҫапла каласа вӗрентнӗ: «Эсир клад ҫывӑхнех ан пырӑр, эпӗ кӑтартнӑ вырӑнта тӑрӑр эпӗ сире чӗниччен. Эпӗ сире чӗннӗ чух сасӑпа кӑшкӑрса чӗнмӗп, мӗнпе те пулсан паллӑ кӑтартса чӗнӗп, вара эсир ман патма пырӑр: пӗри те пӗрне-пӗри пӗр сӑмах та ан чӗнӗр. Эпӗ маларах кайса вырӑнне пӑхам та шӑннӑ ҫӗре ирӗлтерем», — тенӗ (вӑл шӑннӑ ҫӗре хӑй тӗллӗнех ирӗлтерме пӗлнӗ).

Вӑл вӗсене мӗн тумаллисене каласан кирлӗ япаласене илсе тата айван ҫынна илсе клад патне кайнӑ. Ӑста клад патне ҫитсен хӑй мӗн тумаллине тунӑ, вара вӗсене алӑсемпе кӑтарткаласа чӗннӗ. Хай айван ҫын ҫавна курать те кӑшкӑрса ярать: «Ав пире чӗнет, айтӑр!» — тенӗ. Ҫапла каласанах ҫӗр шӑнса та ларнӑ, ҫиеле тухнӑ клад аялалла анса кайнӑ. Вара ӑсти пит ҫилленнӗ те хай айвана хытӑ тивертсе янӑ. «Эсӗ пӗтертӗн пирӗн ӗҫе, мӗншӗн эсӗ сасӑ патӑн?» — тенӗ. Вара ӑсти нумай шухӑшласа тӑрсан каланӑ: «Эсир ҫакӑнта тӑрӑр, эпӗ тата кайса пӑхам, ҫӗнӗрен пӗри те пӗр сӑмах ан чӗнӗр», — тенӗ. Вӑл ашӑк пӗркенсе клад тӗлне итлеме виртнӑ. Усалсем ӑна итленӗ чух вӗлерес пек хӗненӗ, кӑшкӑрма та пултарайман: аран-аран кӑшкӑркаласа янӑ та, хай ҫынсем чупса пырса аран ҫӑлса илнӗ. Вара вӑл каллех хай айвана пирӗн ӗҫе пӑсрӑн тесе хытах та тиверткелесе янӑ: «Клад сан пирки пӗтрӗ тата хам та чуть пӗтеттӗмччӗ», — тенӗ. «Клад ӗнтӗ халӗ час тухас ҫук; хӗрӗх хӑлаҫ аялалла анса кайрӗ», — тенӗ.

Киле таврӑнсан хай айвана каллех виҫӗ-тӑватӑ хут ҫупса янӑ, сана пула клад та пӗтрӗ, хам та чуть вилеттӗмччӗ тенӗ. Усалсем хӑйне чӑнах та хӗненине ӗнентерес тесе вӗсене ҫурӑмне кӑтартнӑ. Ҫурӑмӗ чӑнах та йӑлт кӑвакарса, хуралса кайнӑ. Усалсем ӑна лумсемпе, тимӗр патаксемпе хӗнесе пӗтернӗ. Вӗсем ҫавна курсан тӗлӗнсе хӑраса кайнӑ. Вӗсем пурте ку япала чӑнах та тӗрӗс пулчӗ тесе ӗненнӗ. Апла-капла ан пултӑр тесе, ӑсти хуҫине пӑтапа пашалу пӗҫерсе пӗчченех пус хапхинчен кӑларса пӑрахма хушнӑ. «Эсӗ пӑрахма кайнӑ чухне хӑратакансем курӑн, эсӗ ан хӑра, вара сана ним те пулмӗ», — тенӗ. Вӑл, чӑнах та, пӑрахма тухсан тӗрлӗ хӑратакан япаласем курнӑ, анчах вӑл хӑраман, пӗрмаях кӗлӗ вуланӑ (Турӑ тӑтӑр, унӑн тӑшманӗсем саланса пӗтчӗр...), вара ӑна ним те пулман.

Ӑсти тепӗр ҫултан каллех пырса илме хушнӑ, клад ун чухне ҫиеле тухать тенӗ. Анчах хуҫи тепӗр ҫулне кайса илмен.

Клад ҫавӑнтанпа халӗ те ҫавӑнтах теҫҫӗ.

## 1237

Пирӗн ҫӗрте пӗр тӗлте пит пысӑк выхӑтӑ пур, вӑл Ахтапана кайнӑ ҫӗрте, хула ӑшӗнче. Унта ӗлӗк хула пулнӑ, вӑл хула йӗри-тавра ур* алтса ҫавӑрннӑ. Ҫав ур алтса ҫавӑрнни хӗрринче пӗр лупашка пур, ҫав лупашкана янӑ тет укҫа, ӗлӗк хула пур чухне, халӗ вӑл укҫа пит аяла кайнӑ тет,

* Канав.

вăл кашни çул Труйски праçник кунĕ ирхине хĕвел тухнă чух тухат тет, ăна çав кун типĕтеççĕ тет, çавна типĕтме кăларнине пирĕн ялсем Кĕркка ятлă çын курнă. Вăл 20 хăлач анчах çитерейменрĕм тет; ун патĕнче пĕр салтак пăхса тăрат тет. Ку Кĕркка çите пуçласан вара шанкăр! туса пухăнса анса карĕ тет. Вара патне пырса пăхса тăтăм-тăтăм тет те карăм тет вара.

Тата пĕр вăхăтра Купса Василийĕ пасартан килеттĕм тет. Ахтапантан тухсанах урапа çине таянса выртрăм тет те çывăрах кайнă тет; çав хула ăшне кĕнине те сисмен тет, çав вăхăтра шăтăкĕ патне лаша пынă тăнă тет. Çула пăрахсах таçтан кĕнĕ тет, хам час вăранман тет. Çав çывăрса выртнă чух тĕлĕкре тухрĕ тет çав шăтăкран пĕр салтак, çав шăтăк алăкне уçса ячĕ тет, унта ик еннелле те лартнă тет пичкесем, çав шăтăк ăшĕ таса тет, аслă тет; çав салтак купсана пичĕкисене кăтартат тет; ак кунта ылтăн, ак кунта кĕмĕл тесе кăтартса çӳрет тет. Мана ку пичĕкĕсене сыхласси питĕ хĕн тесе калат тет, ĕнтĕ кăсене кăларма вăхăт çитнĕ тесе калат тет, анчах мана ахаль пама çук тесе калат тет, пĕр лаша пусса чӳк тусан эпĕ парăттăм тесе калат тет, анчах шурă лаша пултăр, ниçта та йĕп вĕçĕ пек хура ан пултăр тесе калат тет, кам çавна тупса тăвакан вара пурте ăна пулĕччĕ тесе калат тет; унтан вара вăрантăм тет те çав шăтăк патĕнче выртапаратăп тет, лаша пăхса тăрат тет, урапа çинчен тепле аннă, хам пĕр пĕлместĕп тет. Унтан вара лартăм та килтĕм тет, çав шурă лаша пусса чӳк тăвакана пулат вара, анчах пит шурă лаша кирлĕ тет.

## 1238

Ĕлĕк пирĕн ял тавращĕнче Валем хуçа пурăннă тет. Хырçă пуçтарнă тет вăл хресченсенчен.

Пĕрре çапла халăхран виç витре укçа пуçтарнă та кантура тухса кайнă тет укçа леçме. Ывăлне те пĕрле илнĕ тет. Укçине Пĕлере* леçмелле пулнă.

Кусем Пĕлере çитнĕ тĕле Пĕлерте пĕтĕм халăх тем халерпеле вилсе пĕтнĕ тет. Кантурсем пурте вилĕ выртаç тет. Валем хуçа ывăлĕпе пĕрле кантурти укçа-тенке пуçтарма пуçларĕç тет. Укça пуçтарнă чух кусем те халерпе чирлерĕç тет. Ывăлĕ çул çинче вилнĕ, хăй те аран-аран çитнĕ тет те чирлесе выртнă тет.

Вара çав Пĕлер укçи тытать тесе çав укана сăрт тăрне чавса чикет. Çав сăрт тăрринче халĕ те хăш чухне тем çутатать. Валем хуçа укçи теççĕ çавна. Сăртне те Валем сăрчĕ теççĕ.

## 1239

Тархан пурăннă çĕрсем ик-виç çĕрте те пур. Пирĕн çĕрте çемленкки вырăнĕсем халĕ те пур, путăках тăрать. Укçисене тупкаланă çав ĕлĕкрехри çынсем. Вăл халĕ те курăнкалать çимĕк каçсенче. Кам ăраскаллă çынна çеç курăнать те, никак май тупаймаççĕ илме. Еле** шуйттанлă, илме пырсан çухалать теççĕ. Хăшĕ хĕрлĕ чăхпа кĕлтуса илнĕ теççĕ, хăшĕ хурпа кĕлтуса кĕлет илнĕ тесе калаçкалаççĕ. Халĕ те пур, Ямантай Курак теççĕ, çав çыннăн айĕнче, как илсенех хăйсем чирлеççĕ, вара калле хураççĕ. Кирлĕ

* Пӳлер.
** Те.

ҫӗре тыткалама юрамасть укҫине. Ҫавна никак рет тупаймаҫҫӗ илме. Укҫи питӗ нумай тет. «Вара авалхи пысӑк укҫасем пурте», — тесе калаҫкалаҫҫӗ.

## 1240

Пӗр пысӑк тӗме пур. Ӑна Киремет тӗми теҫҫӗ. Халӗ чӑвашсем калаҫҫӗ: вӑл тӗме ҫине Киремет тухса выртать теҫҫӗ. Пирӗн хирте Укҫа тӗми пур. Укҫа тӗми ҫинче ҫимӗк каҫ укҫа ҫунать теҫҫӗ. Ҫав укҫа пӗртен-пӗр ывӑла пусса парсан тухать теҫҫӗ.

## 1241

Пӗр пысӑк ту пур. Вӑл тӑва Ту пуҫ теҫҫӗ. Ҫав ту ҫинче ҫӗрле вут ҫунать тет. Ӗлӗк пуянсем укҫисене ҫӗр айне пытарнӑ, ҫав укҫа темиҫе ҫул выртсан ӑна шуйттансем илешеҫҫӗ пулать. Ҫав укҫана усалсем ҫур ҫӗр вӑхӑтӗнче ҫиеле кӑлараҫҫӗ тет, кӑнтӑрла варринче типӗтме кӑларса хураҫҫӗ пулать. Ваттисем шухӑшланӑ: ҫур ҫӗр вахӑтӗнче кайсан ҫав укҫана ҫӗр айӗнчен пӗр сас-чӗвсӗр, шавламасӑр чаваласа илме пулать тенӗ. Пӗр сӑмах кӑна каласан ҫав укҫа каялла анса каять. Кайран вара килелле таврӑннӑ чухне усалсем аптратаҫҫӗ пулать. Ҫӗрле, ҫур ҫӗр варринче, икӗ старик чавма каяҫҫӗ пулать. Ку ҫутӑ патне ҫитеҫҫӗ, чавалама тытӑнаҫҫӗ. Хӑйсем пӗртте шавламаҫҫӗ. Кӗсем чаваланӑ чухне пӗри укҫа пичӗкине курах каять. Ку савӑннипе: «Пулчӗ!» — тесе кӑшкӑрса ярать. Ку кӑшкӑрса янӑ вӑхӑтра укҫа пичӗки кӗмсӗртетсе анса та каять. Кӗсем вара: «Пӗтрӗмӗр», — тесе шухӑшлаҫҫӗ. Килелле кӑшт кайсанах кӗсем хыҫӗнчен шыв тулса килет тет, кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе лашасем, сурӑхсем килеҫҫӗ тет. Хӑраса киле ҫитрӗҫ тет.

## 1242

Ӗлӗк-авал ҫӗр айӗнче мӗнле те пулин япала пытарнӑ пулсан пурӑна киле ҫак мулсем чунланаҫҫӗ те е лаша пулса, е йытӑ пулса ҫӗр айӗнчен тухаҫҫӗ имӗш. Ун ҫинчен пӗрре пире кукаҫей каласа пачӗ, эпир ӑна ҫӑварсене карса пӗр чӗнмесӗр итлесе лартӑмӑр. Ӗҫ пулнӑ акӑ мӗнле. Ҫӗрле 12 сехет тӗлӗнче кукаҫейсем пӗри те ҫывӑрмастпӑр тет. Уйӑх ҫути ҫап-ҫутӑ пулнӑ ҫав вӑхӑтра. Кукаҫейсен кил пӑлтӑрне пусма тӑрӑх ылтӑн чупа-чупа улӑхать тет. Ҫак ылтӑна ҫемьесенчен чӑн кӗҫӗнни улӑм пӗрчипе ҫапсан ҫак чунланнӑ мул ҫӗнӗрен укҫа пулса тӑрать тет. Кукаҫей кӗҫӗн ачине кӑларасшӑн пултӑм тет те, вӑл тухма хӑрарӗ тет пӗчченҫи, унтан ку мул вылярӗ-вылярӗ тет, анчах ҫухалмарӗ тет. Эпир кукаҫее хирӗҫ: «Эх, кукаҫей, ҫавӑн чухне эсир вӑл укҫана тупнӑ пулсан мӗн чухлӗ укҫа пулатчӗ вӗт пирӗн», — тесе каларӑмӑр. Кукаҫей пире: «Ӑна хӑраман ҫын кирлӗ, хӑраса айкашакан ҫынна хӗн килет, ҫав мул ҫынна сиен тума пултарать», — терӗ.

## 1243

Пирӗн ял Пӳлеркӳл урамӗ чиркӳ панчен тытӑнса кӗтӳ хапхи патне ҫитиччен пӗртте тикӗс мар, шӑтӑклӑ-шатӑклӑ, тункаталлӑ-тӗмескеллӗ. Унта ӗлӗк чӑваш масарӗ (ҫӑви) пулнӑ тет. Ҫав масар ҫинче, кашни каҫ вут ҫунатчӗ тет. Вӑл вутран чӑвашсем пит хӑранӑ, ҫав хӑранӑ пирки пит те нумай халапсем кӑларнӑ.

* * *

Пĕрре çапла каç пуласпа тухрăм урама. Каç тӳлекчĕ, ăшă, ниçтан ниепле çил те çук, калама та çук аван. Тухрăм та чиркӳ патнелле утап тет. Ак утап малалла, тӳрех ялтăр туса карĕ. Куç-пуç хуралса карĕ. Пуç çаврăнса карĕ, чут каялла кайса ӳкмерĕм тет. Хай пăхрăм лайăххах хама хам йăпатса, инçе те мар ман умра пĕчĕк çурта вучĕ пек симĕс вут ерипен çӳлелле çĕкленет. Эп хайхи сăнаса тăрап мĕн пулĕ тесе. Унччен те пулмарĕ — çĕкленчĕ-çĕкленчĕ те этем пулчĕ тăчĕ. — Ах тур! Мĕн ку? — кĕлтума та пĕлместĕп. Çӳç-пуç вирелле тăчĕ, хам куçа илмесĕр пăхса тăратăп. Хайхискер каллех йăлтăр! турĕ те лап! сӳнчĕ. Сӳнчĕ те, кăшт тăрсан пăхап çав тĕле: пысăк алтăр куçлă вăкăр тăра парать ман умра, хăй мĕкĕрет. Ăçта каяс, ниçта кая пĕлмеп, вăкăр тек мĕкĕрет, хăратать. Мĕн пулсан пулĕ терĕм. Малалла утма шухăш тытрăм. Ак кемит! Эп пĕрре ярса пусрăм та, ним те çук ман умра, вăкăр та, вут çути те. Тĕлĕнтĕм те карăм. Хайхискер унтан вара виç каç иртрĕ. Тăваттăмĕш каç Хура Макар чакма çулăвĕпе персе пăхнă çав вăкăра. Чăн та, тем чул ылтăн тăкăнчĕ тет çав вăкăртан. Çапла вара пуйса кайнă тет ман аслă аннен ашшĕ тесе калаççĕ. Вăл çутта мул çути теççĕ (ылтăн çунать теççĕ). Вăл тĕрĕсех пулман пулас тетĕп хам шухăшпа. Çав вут çути тĕрĕс те пулĕ, ăна эп хам та курнă, вăл фосфор çунать тӳлек каç.

Пиччепе каçхи кĕтӳ кĕтнĕ чуне пичче хăвалатчĕ вăл вут çутине, анчах çывăха çитме çук, аякран аякка каять. Вăл тӳлек, çилсĕр ăшă каç кăна пулатчĕ.

## Мур

### 1244

Мура чунлă япала теççĕ. Ăна этем пулать теççĕ. Выртса йăвалансан этем пулать, тепĕр хут йăвалансан йытă пулать. Этем пекех калаçать теççĕ. Çавăнпа мур вăхăтĕнче анчăк-мĕн киле ерсен ăна тăрантарса усраççĕ.

### 1245

Ялта чир халер-мĕн пулсан та çĕр витĕр тухнă, хĕр аки тунă. Çын мурĕ ĕне пулса çӳрет тенĕ. Çав халер ертсе килекен çын хыççăнах килнĕ çулпа пуçламан çăкăр кустарсан халер яла сарăлмасть тет.

### 1246

Ĕне картине пĕчĕкçеççĕ кăкшăм çакса янă. Выльăх мурĕ вăхăтĕнче çав кăкшăма пĕр чĕлĕ çăкăрпа аранçă сĕт хунă. Çав çăкăрпа сĕте выльăх мурĕ çиет те вара выльăхсене вĕлермест тенĕ. Сĕтпе çăкăра кăкшăма çапла каласа янă: «Çак сĕтпе, çăкăрпа тутă пулăр, ĕçĕр те çиййĕр, выльăхсене тĕрĕс-тĕкел усрăр», — тенĕ.

### 1247

Выльăх мурĕ çын е йытă пулса çӳрет тет. Пĕр çул Кушкăра питĕ выльăх вилнĕ тет. Пĕр çын арпалăхне çав çул пĕр хĕрлĕ йытă пырса иленнĕ тет. Ку йытта çак çынсен карчăкĕ кашни каç кăкшăмпа тултарса сĕтпе çăкăр леçнĕ тет. Кӳршĕ карчăкĕ кăкшăмпа сĕт картана çака-çака янă. Пĕтĕм ялта ĕнесем

вилсе пĕтнĕ тет, кĕсенĕн выльăхĕсем сывă пулнă тет. Пĕр карчăк çак йытă çинчен (ăна ĕне мурĕ тенĕ) ачине каласа панă. Ачи пăшалçă пулнă. Вăл пăшалне илет те анкартине арпалăха кайса, йытта персе вĕлерет, йытта вĕлернĕ кунах кĕсен ĕни ўксе вилет тет; кўршĕ карчăккин ĕни сывă юлнă тет.

## 1248

Мур йытă пулса килет теççĕ. Пĕр çыннăн сакăр ĕне пулнă тет. Мур тухнине пĕлсен çак çын сыхла пуçлать тет. Халăх хушшинче мур çинчен çапла сăмах тухнă тет: мур выльăхсене малтан çырса çўрет имĕш. Çын кашни каç аслăк çине хăпарса сыхланă тет. Сыхласан-сыхласан мур пĕр майра пек-мĕн пек пулса çак çыннăн ĕнисене çырма пычĕ тет: «Хури пур, шурри пур, ули пур, мĕн пурĕ сакăр ĕне, аслăк çинчипе тăххăр», — тесе каларĕ тет. Вара сакăр ĕни те, çынĕ те вилчĕç тет.

## 1249

Чăвашсем чирсенчен мур чирне чунлă япала теççĕ. Вăл хĕрарăм пулса çўрет теççĕ. Чирсене Турă хамăр çылăхшăн ярать теççĕ. Ĕлĕк, мур чирĕ çўренĕ вăхăтра пирĕн хамăр ялта Васлей старик кĕлечĕ айĕнче пурăннă тесе калаççĕ ваттисем.Вăл çĕрле хура йытă пулса тухса каятчĕ тет, кăнтăрла хĕрарăм пулса выртатчĕ тет. Васлей старикпе калаçатчĕ тет: «Эсĕ мана ан çиллентер, çиллентерсен пурне те пĕтерĕп», — тетчĕ тет. Ăна вĕсем сĕт çитерсе тăнă тет. Чăнах та, унăн пĕр чун та вилмерĕ тет.

## 1250

Мур килсен çын йышланнăран Турă ярать теççĕ. Тата вăтă çынсем Мур килессине малтанах тĕлĕк тăрăх пĕлеççĕ.

## 1251

Мурсен хăйсен пуçлăхĕ те пур. Вĕсен йĕрки питĕ çирĕп. Мурсен ушкăнне хĕрарăмсем те, арçынсем те çўреççĕ. Çĕрле мура каймалла пулсан çывăракан упăшкисем çумĕнчен арăмĕсене тăратса илсе каяççĕ. Çывăрма та памаççĕ.

Пурте пĕр палăртнă вырăна пухăнаççĕ. Камăн мĕн тумаллине пĕлсе усал тума каяççĕ.

## 1252

Этем мурĕ тата Выльăх мурĕ е Вĕçен кайăк мурĕ пулать тет. Мур выльăхсене çулăхать тет, выльăхсем урма пуçлаççĕ, картана çĕмĕреççĕ, пысăк кўме урлă та сиксе каçаççĕ тет. Вара вилсех каяççĕ тет.

## 1253

Каçхине арçынсем ĕçрен таврăннă чух вĕсен умне çăмха кусса тухать. Ку мур тесе çăмхана питĕ хытă хĕненĕ. Ирхине çак вырăнта хĕр виллине тупнă.

## 1254

Мурсене курсан вĕсене паллă туса ямалла тет.

Пĕр карчăк мура кайнă. Мура çамрăксем курнă та çамкине ватса тарăн шăтăк тунă. Тепĕр кун çав карчăкăн çамки суран пулнă. Вара вăл мурта çӳренине пĕлнĕ.

## 1255

Пĕррехинче пĕр хĕрарăм çĕрле хăнаран килме тухнă. Хĕреслĕ çул çине тухнă тет. Пăхать тет, икĕ çул хĕресленнĕ вырăнта вăрăм çынсем пухăннă тет. Пĕр çыннине пикенсех хĕнеççĕ тет. «Мĕншĕн итлеместĕн, малашне апла ан ту!» — тесе калаççĕ тет. Автан авăтрĕ тет те, çак çынсем çухалчĕç тет. Кусем мурсем пулнă тет.

Мурсен йĕркисем питĕ çирĕп. Кам та кам мура тухмасăр юлать тет, çавна питех те вăйлă асаплантараççĕ тет. Вĕсен яланах мĕн те пулин усал тумалла тет.

## 1256

Çынсем мунча кĕрсе тухсан, çĕрле, çав чирсем икшерĕн-виçшерĕн пуçтарăнса мунча кĕретчĕç тет. Макăратчĕç тет. «Хĕн пире капла çӳреме», — тесе калатчĕç тет. «Пире купирнана çавăн чухлĕ (миçе те пулин калатчĕç тет) янă та, пирĕн ирĕксĕрех çӳрес пулать, çӳремесен юрамасть», — тесе калатчĕç тет.

## 1257

Выльăх мурĕпе Çын мурĕ этем пулса çӳреççĕ теççĕ, çав Мур вара çын вĕлерес чухне кашни килти çынсене шутласа çӳрет те ячĕсене хут çине çырса хурать теççĕ.

## 1258

Мура лайăх çынах каять тет. Çав мура каякан çын çĕрле, çын шăплансан, вырăн çинчен тăрса, кĕпи-йĕмне хывса пытарса хурать тет те хăй вара выртса, йăванса хĕп-хĕрлĕ йытă пулса мура каять тет. Вăл вара выльăхсам картине кайса миçе выльăх вилмеллине карт картать тет. Муртан хăтăлас тесен выльăх картине сĕтсем çакса яраççĕ. Сĕтсене мурсем çисен: «Кусам пире лайăх пăхаççĕ, кусене тивес мар», — тесе калаççĕ тет. Çапла вара ĕнесем вилмесĕр юлаççĕ тет. Лайăх пăхманнине çилленсе пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтерет тет. Каçхине çапла çӳресен, тул çутăлас енне кайсан каллех килне кайса выртать теççĕ.

## 1259

Мура юмăç карчăкки пулса каят теççĕ, вăл ак çапла пулать теççĕ: тăват çынна пĕр кунтах юмăç пăхса ярсассăн тула тухса, макăрса йăванат тет те шур йытă пулса мура каят тет. Чăн первей вăл хăй юратман яла кайса, пĕр уй хĕрĕнчи çыннăн ĕне картине кĕрсе хуçи пыраччен ларат теççĕ; хуçи пырсан, çăккăр татĕк пăрахса памасан ĕнине çиччас вĕлерет; çăккăр татĕк пăрахса парсан унăнне нимĕнне те тивмест, анчах ун çумĕн-

чи çын патне кайса ун ĕнине вĕлерет теççĕ. Вăл çын Мур киличчен наччас ĕнине суса сĕтне пĕр-пĕр çĕре çӳле пытарса лартсассăн, Мур вара ун ĕнине тупимас теççĕ. Мурĕ тата ун çумĕнчи çынăнне кайса вĕлерет, унтан тата тепринӗнне; çапла Мур пĕтĕм ял ĕнине вĕлерсе пĕтерет теççĕ.

**1260**

Мура пирĕн чăвашсем акă мĕн тесе ĕненеççĕ: Мур çын — çын пекех, пĕрре анчах мар — вĕсенчен хăшĕ асли, хăшĕ кĕçĕнни пулать; вĕсем пурăнассине пĕр-пĕр пысăк шыв çинче, кĕпер айĕнче пурăнаççĕ. Этем мурĕ пулас пулсан асли хăй каять; Выльăх мурĕ е Вĕçен кайăк мурĕ пулас пулсан асли кĕçĕннисене хушса ярать; анчах шутсăр пĕрне те вĕлерме юрамасть, мĕн чухлĕ вĕлерессине хăй хушса ярать теççĕ. Мур темиçе тĕслĕ пулма та пултарать: çын пек те пулать, йытă пек те, кушак пек те, ытти выльăх тĕслĕ те пулать теççĕ. Хăш ялта Мур пулмалла, Мур çав яла пырать те çын пулса пĕр-пĕр пуян çын патне хваттере кĕрсе выртать. Пуян çын ăна лайăх ĕçтерсе çитерсен ун выльăхне вĕлермесĕрех хăварать. Мур ялта вĕлерсе çӳресен-çӳресен йытă пулса яланах çав çын килне кĕрсе выльăхсем хушшине кĕрсе выртать. Хуçи ăна Мур иккенне сисет те кашни кун пăтă пĕçерсе картана çакать. Мур ăна кашни çĕр çиет. Вара çав çыннăн темĕн чухлĕ выльăх пулсан та хăтăлса юлать теççĕ.

**1261**

Мурсем пĕр çын патне пынă тет те çапла каланă тет: «Сан лашусене вăрлатпăр», — тенĕ. Ку çынни пĕр Мурăн аллисене пуртăпа татса пăрахнă тет. Мурсем ку çын çине шутсăр çилленнĕ тет.

Темиçе каçран çак çын патне мурсем каллех пынă тет. Вĕсем çын сассипе чӳречерен: «Лашусене вăрласа каяççĕ», — тесе кăшкăрнă тет. Çынни хыпаланса тухнипе пурттине манса хăварнă тет. Вара мурсем ăна çисе янă тет.

**1262**

Малтан яла килнĕ чухне Мур, аслă улпут пек, паваскана темиçе лаша кӳлсе ларса килет теççĕ. Выльăх мурне кӳрентерес мар тесен картана какай пăтти пĕçерсе, пуркă çине хурса лартнă тет. Этем мурĕнчен хăтăлас тесен вара халăх пуçтарăнса пĕр çынна тара тытнă; вăл çын чустаран хĕрĕх те пĕр çын кĕлетки тунă та хăйсен миши урлă каçса ют пусса кĕлеткесене пăрахнă, вара Çын мурĕ çав яла каять тесе калаççĕ. Çав кĕлеткесене леçекен çын халăхран нумай укçа илет теççĕ. Мура хамăр тирпейсĕр пурăннăран, çынсене тĕрĕс тытса пурăнмантан, спасчен улма çинĕрен Турă ярать теççĕ. Мур килессине тĕлĕк тăрăх пĕлекенсем пур: тĕлĕкре вăрмансене пит кастарнă пек анасем курсассăн тĕлĕкçĕсем Мур килмелле теççĕ.

**1263**

Ĕлĕк пит час-часах Ĕне мурĕ пулатчĕ тет. Çав Мур хĕр пекехчĕ тет. Çапла ĕнесем вилнĕ вăхăтра пĕр çын анкартине кайнă тет. Улăм ури хыçĕнчен пĕр хĕр тухрĕ тет те хирелле каять тет. Сăхманпа тет, пуçĕнче çĕлĕк (ĕлĕк хĕрсем те çĕлĕк тăхăнса çӳренĕ) тет, аллине туя тытнă тет. Ку этем-

ми хӑй хӗрӗ инҫетри анкартне каять пуль тесе: «Хвекла, каҫ пулать, ан кай», — тесе кӑшкӑрать тет. Леш нимӗн те чӗнмест тет. Этемми: «Ку вара тикӗн* пулмарӗҫ, ӗне тавраш пулчӗҫ ку», — тесе шарламан тет вара. Ҫапла хиреллех тухса карӗ тет.

## 1264

Ӗне мурӗ вӑл ҫынах теҫҫӗ. Ӗлӗк ялӗ-ялӗпе ӗне мурне ҫӳренине ҫапла Калюкка салтак калаҫаччӗ тет. Кавказра служить тунӑ чухне (Терек ятлӑ ҫырма хӗрринче) пӗрре каҫхине эп пурнакан хваттер хуҫине: «Кӗҫӗр Ӗне мурне кайма сана черет», — тесе каласа хӑварчӗҫ те, хуҫа тумланса ирӗксӗрех: «Турӑ хушнипе ҫӳретпӗр», — тесе макӑрса тухса кайнине хам куртӑм тесе каласа парачӗ тет.

Тата пӗр ҫын армантан ҫӗрле килнӗ чух ӗлӗк ҫав Ӗне мурӗ вӑхӑтӗнче иккӗн ют ҫынсем ялалла килнине курнӑ тет. Хыҫӗнчен итлесе пынӑ та, ҫав ҫынсем иккӗшӗ ҫапла калаҫаҫҫӗ тет. Пӗри: «Эсӗ епле, нумайлине пӗтӗмпех вӗлеретӗн-и?» — терӗ тет. Тепри ӑна хирӗҫ: «Ҫук! Пӗтӗмпех вӗлерме шеллеп, виҫ-тӑват ӗнеллине пӗрне вӗлереп. А эсӗ епле вӗлерен?» — «Эпӗ кӗнӗ карташне ӗне тавраш хӑвармастӑп», — тесен, тепри: «Э-э-э, эсӗ шеллеместӗн, чунсӑр иккен», — терӗ тет те, тытӑнчӗҫ тет вара иккӗшӗ ҫапӑҫма.

Вӑл Ӗне мурӗ пирӗн кукаҫейсем патӗнче ӗлӗк кункра айӗнче шурӑ йытӑ пулса выртса пурӑннӑ. Ӑна ҫуллӑ пӑтӑсемпе чыслатчӗҫ тет, ӗнесене ан тив тесе, вара вӑл вӗсен ӗнисене тивмен тет. Пӗрре ҫапла ют хӗрарӑм пырса кӗрсен Ӗне мурне курса: «Ку мӗскерле шур йытӑ сирӗн?» — тесе ыйтнӑ та, «Вӑл пирӗн хӑна», — тесе каларӑмӑр та, ҫавӑнтан кайран писрӗ. Писсенех пирӗн ӗнесем шалт вилсе мурпа пӗтрӗҫ», — тетчӗ анне.

## 1265

Пирӗн кунта мур тавраш ҫинчен акӑ мӗн калаҫаҫҫӗ. Пирӗн кунта мура ҫын каять теҫҫӗ. Ҫын мура кайнӑ чухне йытӑ пулса каять теҫҫӗ. Вӑл вара выльӑхсене вӗлерсе ҫӳрет пулать. Выльӑхсене вӗлерсе ҫӳрекен йытӑ карта урлӑ каҫнӑ чухне этем пек каҫать теҫҫӗ, выльӑхсене вӗлерекен йытӑ ҫавӑнтан паллӑ теҫҫӗ. Тата хӗлле сысна пулать теҫҫӗ. Анчах ӑна мӗншӗн янине никам та пӗлмеҫҫӗ. Пирӗн кунта ҫав мур ҫинчен халап та пур. Ӗлӗк пӗри таҫтан таврӑнать тет лашапа, ӑна пӗр ҫын тӗл пулнӑ та: «Мана ларт-халӗ, эпӗ питӗ ывӑнтӑм», — тенӗ. Хайхискер кӑна лартнӑ та, ҫул ҫинче калаҫса пырать тет, эпӗ ҫапла-ҫапла, мура карӑм тесе каларӗ тет. Ҫул ҫинче пӗр йытӑ иртсе каять тет, ҫак мура карӑм тенӗскер урапа ҫинчен сиксе анчӗ тет те, выртса йӑваланса йытӑ пулса, ҫав иртсе каякан йытта тулласа ячӗ тет. Вара каллех выртса йӑваланса ҫын пулчӗ тет. Ҫак лартса пыракан ҫынни: «Ма капла тулларӑн?» — тесе ыйтнӑ тет. «Вот мӗншӗн тулларӑм эпӗ ӑна, вӑл Выльӑха пӗтерекен мур, эпӗ Вут тӗртекен мур, вӑл пӗрмаях вӗлерсе ҫӳрет, эпӗ хутран-ситрен анчах вут тӗртетӗп», — тенӗ. — Эпӗ ӗнтӗ сирӗн яла пыратӑп, эсӗ киле часрах ҫит те пӳрт кӗтессине карчӗ таран катса пӑрах, вара вутран юлӑн», — тесе каларӗ тет. Чӑнахах та, ҫав ҫын килне таврӑннӑ та пӳрт кӗтессине катса пӑрахнӑ, хайхискер тепӗр кунхине вут тухнӑ тет, чӑнахах та, ҫав ҫын вутран татӑлса юлнӑ тет. Вӑл вара питӗ пуян пулнӑ тет, ялти ҫук ҫынсене нумайӑшне тӑрантарса усранӑ тет.

---

* Ҫын пулмарӗ-иҫ.

**1266**

Ялта пушар пулас умĕн тĕлĕкре Мур пĕр-пĕр çынна каланă тет: «Пирĕн хырăм выçрĕ. Эсир хапха тăпсине юпа тăрне чашăкпа апат тухса лартăр. Эпир ăна пырса çиетпĕр. Вара пушар пулсассăн ытти килсем çунаççĕ, эсир çунмасăр юлатăр».

Вара, чăнах та, ытти килсем çунсан та кăсем юлнă тет. Кайран вара чылай килсенче çавăн пек апат лартнине курма пулатчĕ тет.

**1267**

1873 çулта кĕркунне пирĕн таврари ялсенче ăçта килчĕ унта пăт-пат выльăхсем ӳке пуçларĕç. Халăх ку инкек-синкек сирĕлсе каймĕ-и-ха тесе пĕр эрне пурăнчĕ, иккĕ те пурăнчĕ. Çук, çаплах сирĕлмест. Пушшăран пушшă, нумайран нумай виле пуçларĕç. И, нумай пулать-и, сахал пулать-и, çав ялта çавăн чул пуç ĕне, çавăн чул сурăх вилнĕ тесе сăмах сарăла та пуçларĕ. Мĕн тăвас ĕнтĕ пирĕн ялăн, йĕри-тавра мур, выльăхсене сутсан илекен çук, пусас тесен пусма хушмаççĕ. Халăх вара аптăранипе, тен, хĕр сухи тусан Мур пирĕн яла килмĕ-ха тесе хĕр сухи турĕç. Ялйышĕ пĕр çĕре пухăнса хĕр сухи тавращĕнче астукалама, кĕлтума пĕр ватă çын суйласа хучĕç. Ял тавра суха пуç туртса çавăрма хĕрĕх те пĕр хĕр суйласа илчĕç. Суйласа хунă çын ачасем пухса, ачасемпе пĕрле ялтан кĕрпеçăмарта пуçтарса пус хапхи умне илсе тухса пĕр хуран пăтă, çăмарта пĕçерме çакса ячĕ те ялтан пĕр суха пуç туртса тухрĕ. Унтан вара пĕр-ик ачине халăх суйласа илнĕ хĕрĕх пĕр хĕре чĕнме ячĕ. Ачасем хыпар тусанах хĕрсем туххăмрах пус хапхи патне, пăтă пĕçерекен çĕре, пухăнчĕç те Мур хăраса кайтăр пирĕн таврараан тесе çӳçне-пуçне салатса ячĕç, пилĕкĕсене йӳле ячĕç, аллисене хăшĕ-хăшĕ саламат илчĕç, хăшĕ-хăшĕ шăлан хуллин çапписене тытрĕç тата хăшĕ-хăшĕ чăпăркка, туясем илчĕç те суха пуçне тавăрса, пĕр аçапа амаран пĕрех хĕр çуралнă хĕре тыттарчĕç. Ытти хĕрсем туртса ял тавра çавăрăнчĕç. Çавăрăннă чух суха кассине ялăн тул еннелле пăрахтарса пычĕç. Ялăн тул еннелле пăрахтарсан яла Мур каçса кĕреймест теççĕ. Ял ăшнелле пăрахтарсан Мур яла кĕрет теççĕ. Вĕсем çаврăннă чух çырма та çырма мар, ту та ту мар, вăрман та вăрман мар, тӳрех шатăртаттарса каçса каяççĕ. Вĕсем акă çапла каласа çаврăнаç: «Мур пăрах пулса вĕçсе кайтăр, инкек ирĕн-каçăн сирĕлсе пирĕн пата ан килтĕр, тăшман тăкăрлăкра хăрăк шалча çине тăрăнса тĕп пултăр», — тесе. Хĕр сухи тунă чух вăл яла ют ялтан этем ывăлĕ-хĕрĕ пырса ан кĕтĕр. Пырса кĕрекене Мур ертсе килет вăл тесе çавăнтах çапса ӳкерсе вилĕм хакне ӳкереç. Йытă-мĕн иртсе кайнине курсан та Мур ерсе килет унпала тесе персе вĕлерсе, Мур юхса кайтăр унпала тесе шывпа юхтарса яраççĕ. Пирĕн ял чӳк тунă чух та пĕр йытă иртсе кайнине курса персе вĕлерчĕç те шывпа мур юхса кайтăр тесе юхтарса ячĕç. Ял тавра çаврăнсассăн, пăтă пĕçерекен тĕле, пус хапхи умне, чарăнчĕç те алăри пушăсене, туйисене, шăхан* хуллисене вăта пăрахса çунтарчĕç. Суха пуçне те Мур-мĕн çыпăçнă пуль тесе вут урлă каçарса лартрĕç. Вара суйласа илнĕ çын вут çинчен икĕ хуранне те антарса лартса, пичĕпе хĕвел тухăç еннелле пăхса акă çапла кĕлтурĕ: «Эй, Пӳлĕхçĕ, Пӳлĕхçĕ! Пирĕн выльăх-чĕрлĕхе сывă усра;

---

* Шăлан.

Мур-инкеке, тӑшман-курайманa пирӗн ялтан сирсе тӑр. Эй, Пӳлӗхҫӗ! Эпир сана асӑнса икӗ хуран ҫимӗҫпе: пӗр хуран ҫуллӑ пӑтӑ пӗҫерсе, пӗр хуран шур ҫӑмарта пӗҫерсе витӗнсе асӑнатпӑр, чӳк ҫырлах, — тесе калать. — Пирӗн выльӑх-чӗрлӗхе ҫӑмарта пек тутӑлӑх пар, пӑтӑ ҫинчи пек сарӑлма пар, хунав пек хунама пар. Мура мур пӗтертӗр, тӑшмана тӑшман пӗтертӗр. Эй, Пӳлӗхҫӗ! Ырӑ Пӳлӗхҫӗ! Сана хӗрӗх те пӗр хӗр витӗнсе пуҫҫапма пуҫтарӑннӑ, вӗсен кӗллисене те пулин илтсе пирӗн парнене ахаль ан ту. Амин», — тет.

Вара ял тавра суха пуҫне тытса ҫаврӑннӑ хӗр пӑттине валеҫсе пачӗ. Пӑтӑ илнисем ҫисе ярсанах ҫӑмартасене те выльӑх-чӗрлӗх ҫӑмарта пек тутӑ пултӑр тесе валеҫсе пачӗ. Ҫӑмарта илекенсем пӗр ҫӑмартине те ватса ҫимерӗҫ, пурте киле илсе кайса, выльӑх-чӗрлӗх ҫак ҫӑмарта пек тутӑ пултӑр тесе картана юпа тӑрне, ҫын ан тупайтӑр тесе тутӑрпа авраса хучӗҫ. Ҫынмӗн тупсан аван мар, выльӑх-чӗрлӗх ӑнмасть, кая-кая ҫухалса пӗтеҫҫӗ теҫҫӗ. Халӑх суйласа илнӗ ҫын чӳклесе пӗтерсен киле таврӑнать. Вӑл ахаль ҫынсем пек таврӑнмасть, яла кӗнӗ чух пус хапхи ҫине виҫӗ хут хӗрес туса, виҫӗ хут ӳксе пуҫҫапса ак ҫапла калать: «Ял хапхине хӗрес хыврӑм, Мур ҫулне пӳлтӗм, кунтан малашне Мур пирӗн яла кӗрсен ҫулне мар, хӑйне пӗтерӗп», — тесе халӑх умӗнче калать. Ҫапла вара хӗр сухи пӗтет.

## 1268

Кӗсен-ҫӑпана ҫӳлти валь ярать теҫҫӗ. Пӗр хӗрарӑм сивӗ чир ҫинчен ҫапла калаҫатчӗ. Ҫав хӗрарӑм кӗпе ҫума кайнӑ тет. Кӗпе ҫумалли вырӑнӗ кӗпер айӗнче пулнӑ тет. Ҫакӑ хӗрарӑм кӗпе ҫунӑ чухне кӗпер ҫинчи 2 йытӑ харкашма тапратрӗҫӗ тет. Ҫакӑ хӗрарӑм итлесе тӑрать тет. Хай унччен те пулмарӗ, этем пек юмахлама пуҫларӗҫӗ тет. Хай ҫакӑсем пӗри Сивӗ чир, тепри Вут мурӗ пулнӑ тет. Хай сӑмахлаҫҫӗ тет. Вут мурӗ: «Эсӗ кӑҫта каян»? — тесе ыйтать тет. Лешӗ, Сив чирӗ, каларӗ тет: «Эпӗ ҫавӑ пуян аслӑ хӗрне чирлеттерме каятӑп», — тесе каларӗ тет. Вут мурӗ каларӗ тет: «Эпӗ ҫавӑ яла каятӑп», — тесе каларӗ тет. Тата ыйтать тет Вут мурӗнчен Сивӗ чирӗ: «Эсӗ мӗлле вут хыптаран?» — тесе ыйтрӗ тет. Вут мурӗ каларӗ тет: «Эпӗ пӗр пӗрене ҫине ҫырса хӑваратӑп ҫавӑ числара, ҫавӑ сехетре тухмалла тесе. Халӗ каятӑп ҫавӑ яла та алӑк тӑрӗнчи пӗрене ҫине ҫырса хӑваратӑп, Мункун кунӗ ҫунса каймалла ҫыратӑп», — терӗ тет, — эсӗ тата мӗнле чирлеттеретӗн?» — тесе ыйтрӗ тет Сивӗ чиртен. «Вӗсем апата лараҫҫӗ те, эпӗ вара яшки ҫине пӗр хӑрӑм пӗрчи пулса анатӑп. Ҫавӑ хӗр кашӑкки ҫине кӗретӗп, вара ҫавӑ хӗр ӑшне кӗретӗп те, вара вӑл хӗр чирлет, вара уна сӗтпе ҫӑмарта ҫитереҫҫӗ, вара пӗр 3 уйӑх пурнатӑп вӑл хӗр ӑшӗнче, — тет. Вара сӗтпе ҫӑмарта кӑна ҫисе пурӑнатӑп», — тет Сивӗ чирӗ. Ҫапла сӑмахласа пӗтерчӗҫӗ те «сывӑ пул» тесе уйрӑлса карӗҫӗ тет. Ҫакӑ кӗпе ҫума пынӑ хӗрарӑм тӗлӗнсе кайнӑ тет итлесе тӑрса. Хай киле таврӑнсанах ҫавӑ ҫунса каймалли ҫын патне каять: «Вот ҫапла хыпар калама килтӗм сирӗн патра, — тет. — Ҫавӑ алӑк тӑрӗнчи пӗренене кӑларса пӑрахӑр уя, — тет, — унсӑрӑн ҫунса каятӑр эсир», — тет. Хай ҫакӑ кил хуҫи ҫавӑ пӗренене кӑларса пӑрахать тет уя. Ҫакӑ хӗрарӑма ҫавӑ хыпара каланӑшӑн укҫа пачӗ тет.Унтан таврӑнсан тата тепӗр пуян патне каять, хай хӗре калать: «Эсӗ сыхланса пурӑн, ҫапла чирлеме пултаран, — тет, — кашнӑй апата ларсан асту вара хӑрӑм татӑлса аннине», — тет. Хай хӗрӗ калать: «Вара татӑлса ансан уна мӗн тӑвас?» — тет. Хай хыпара калама пыни калать: «Эсӗ уна кашӑк ҫине кӗрсен такмак хатӗрлесе лар та, так-

мак ăшне яр та вара такмак çăварне çыхса ларт», — терĕ тет. Ку хĕр ашшĕ çакă хыпара каланăшăн çур пăт çăнăх пачĕ тет. Унтан таврăнать киле ку хĕрарăм. Хай хĕр сыхланса пурнать. Пурăнсан-пурăнсан чăнах та хай хăрăм пĕрчи татăлса анчĕ тет. Кашăкки çине кĕрет те ӳкет, хай хĕр такмак ăшне ярать те çыхса лартать. Ну, хай такмак хăй тĕллĕн тапăртатса выртать тет те кайран йĕп-йĕпе пулса каять тет. Вăхăт çитнĕ те, хай лешĕ, çунмалли пуян çын пĕрени, уя кăларса пăрахнăскер, хăй тĕллĕн çунса выртать тет. Килĕ-çурчĕ вара пĕрре те çунман тет.

## 1269

Пĕррехинче пĕрисем калăм каç чиркӳне кайнă тет. Ирхине чиркӳрен килеççĕ тет те, пĕрисен хапхи хĕп-хĕрлĕ тет. Ку килтен пĕри мура çӳренĕ тет. Çак чиркĕве кайнисенчен пĕрисен пĕрмаях ĕни вилнĕ тет. Вара вĕсем юмăç патне кайнă пулнă тет. Юмăç вĕсене: «Шăп çур çĕрте кăмакана вут чĕртĕр. Вара ĕнене вĕлерекен хăех пырать», — тесе каланă тет. Çапла тунă та тет. Алăкĕсене питĕрсе хунă пулнă тет. Нумай та вăхăт иртмен, кăсен алăкне кушак чăрмалама пуçланă тет. Кăсем: «Кĕртмелле-ши, кĕртмелле мар-ши? — тесе шухăшлаççĕ тет. Вара: Кĕртес», — тесе каларĕç тет те кĕртрĕç тет.

Кушак кĕчĕ тет те вутта сӳнтерме тăрăшать тет. Юмăç кушака тытса сăмсине касма хушнă пулнă тет. Вара кăсем кушака тытрĕç тет те сăмсине касса кăларса ячĕç тет. Вара хайхи çак кушак килне çитсен хапхи тăрне ухса выртнă тет. Унтан юн кайнипе çĕре кĕрслетнĕ тет. Вара виç кунтан вилнĕ тет. Вилес умĕн, чăн та, выльăхсене хам вĕлерсе çӳрерĕм тесе каласа хăварнă тет.

## 1270

Чăвашсем Мура Турă ярать, вăл çын тиççĕ. Мур пулсан хапха юпи тăррине пашалу туса хураççĕ.

Ĕлĕк пĕр çын навоз тăкма кайнă тит, вара вăл уйра пĕр йытă курнă тит, вара çав йытă çавă çын патне пычĕ тит те йăпăлтатасшăн тит. Çавă çыннăн пĕр чĕл çăкăр пулнă тит, вара вăл çăкăрне йытта панă тит, вара çынни киле таврăннă чухне çавă йытă выртса йăваланса çын пулнă тит, вара çавă каланă тит: «Ну, ачам, эпĕ виçĕ кун апат çиман, спаçипа сана, халĕ сирĕн ялта питĕ вăйлă мур пулмалла, çавăнпа эсĕ киле таврăнсан çуллă пашалу пĕçерсе хапха юпи тăррине кăларса хур, вара эпĕ сана палласа илĕп, санăн ним айăп та пулмĕ тата хăвăн хурăнташусене кала, вĕсем те çапла туччăр», — тесе каланă тит. Вара чăнах та çавă çын çапла туса хунă тит, вара ним сиен те пулман тит, хурăнташĕн те ним те вилмен тит, ыттисен вара ним те юлман тит, йăлт вилсе пĕтнĕ тит.

## 1271

Пĕррехинче асатте Кĕтнене каять тет. Малта пĕр ушкăн йытă пырать тет, хыçалтан пĕр çын пырать тет. Хай палламан çын асаттене: «Мана лартса кай-ха, эпĕ сана ним те тумастăп. Эпĕ хамăр ушкăнтан юлтăм», — тесе калать тет. Вара асатте лартрăм тет. Йытăсем патне çитсен хайхи çын выртса йăваланчĕ тет те йытă пулса тăчĕ тет. Вара ытти йытăсемпе пĕрле кайрĕ тет. Çав çын Мур пулнă тет.

## 1272

Пĕр çын мура кайнă тет. Вăл хура кушак пулса тăнă та тухса кайнă. Ялти пĕр хĕрарăм патне кĕрсе ăна асаплантарма пуçланă. Çакна лешĕн упăшки сиссе вăранать те хура кушак арăмĕ патĕнче ларнине курать. Вăл çĕçĕ илсе кушака перет. Кушакăн хăлхи чĕрĕлсе анать те, кушак тухса тарать.

Тепĕр кунне кусем çав хĕрарăмăн хăлхи чĕрĕлсе аннине курасçĕ. Каласа парасçĕ упăшкине. Упăшки ыйтать:

— Арăм, хăлхуна мĕн турăн? — тет.

— А-а, кушак чавса антарчĕ, — тет лешĕ.

Упăшки вара арăмĕ мура кайнине пĕлет те вĕлерет ăна. Вара лешĕ Усал сывлăш пулса тăрать. Пĕр канăç та памасть тет упăшкине. Упăшки вара нумай пурăнмарĕ, вилчĕ тет пăсăлса.

## 1273

Варвари ятлă пĕр хитре хĕр пулнă. Пĕррехинче ăна темĕскер пулать: кашни каçах вун пĕр сехетре вăрттăн тула тухса каять тет. Амăшĕсем çавна сиснĕ те сыхлама пуçланă.

Тепĕр кунне Варварин кайма вăхăт çитрĕ тет, анчах ашшĕ-амăшĕсем çывăрмасçĕ тет, ăна сыхласçĕ тет. Варвари ниçта кайса кĕрейми утать тет пӳртре. Çав вăхăтра пусма айĕнче йытăсем вăрçасçĕ, найкăшасçĕ тет. Вара Варвари чăтаймасăр макăрса ярать тет, амăшĕпе ашшĕне хăйĕн мура каймалли çинчен каласа парать тет.

— Мĕншĕн сан мура каймалла? — тесе ыйтсан:

— Те хам çылăхшăн, те сан çылăхшăн, — тесе хуравлать тет.

Унăн виçĕ çул мура каймалла пулнă тет. Çав вăхăт тухсан малалла чиперех пурăнма пултарать тет.

Пĕр каччă хитре Варварие питĕ юратнă тет, качча илет тет. Варварипе Пăсу Яккуне кĕлете хупрĕç тет. Çав каç та кĕлет айĕнче йытăсем айкашрĕç тет. Пăсу Якку çывăрса кайсан Варвари кĕлетре пĕр шăтăк тупрĕ тет те чаваласа пысăклатрĕ тет (йыттисем, Варвари пĕр каç тухмасанах ăна ватса пĕтересçĕ тет). Варвари çав шăтăкран тухрĕ тет вара. Çапла вăл упăшки сисиччен виçĕ çул тухса пурăннă тет. Пăсу Якку çавна нимĕн те сисмен тет. Виçĕ çул иртсен йытăсем килме пăрахрĕç тет. Халĕ Варварипе упăшки питĕ лайăх пурăнасçĕ тет.

Варвари мăнкун каç ача пăрахнă пулнă иккен. Ĕлĕк çав каç пăрахма юраман тет; ăна Мур асап кӳрет тет.

## 1274

Пирĕн ялта анчах мар, таврари ялсенче те мура кайнисем çинчен каласçĕ.

Пĕр каччă авланчĕ тет. Унăн арăмĕ каçхине яланах урине салтмасăрах çывăрма выртать тет. Çур çĕр иртсен, упăшки çывăрса кайсан, сарай хыçне тухса макăрма пуçлать тет. Макăрсан-макăрсан выртса йăванса шурă йытă пулса тăрать тет. Çапла мура кайса кашни каçах ир еннелле тин килсе выртать тет. Хăй çывăрнă чух яланах найкăшатчĕ тет. Хăйĕн тутисем тăр кĕсенччĕ тет. Хăй çине упăшкине алă та яртармастчĕ тет. Вара упăшки

кăна сыхлама пуçларĕ тет. Арăмĕ малтанхи пекех макăрса йытă пулса кайрĕ тет. Тепĕр ирхине упăшки арăмне:

— Эсĕ мура каятăн-иç, — тесен арăмĕ:

— Мана Турă çапла хушнă, вăхăт çитсен пăрахатăп, — терĕ тет.

Çапла чылай пурăннă. Вара упăшки ашшĕ йĕрĕнтернипе иккĕшĕ венчет тунă (арăмĕн мура каймалли вăхăчĕ тухман пулнă). Çавăн хыççăн арăмĕпе упăшки те мура кайма пуçларĕç тет.

## 1275

Пирĕн аннен амăшĕ пĕр ирхине анкартине купăста хуçма тухнă тет. Çĕр улми йăранĕ çинче шап-шурă йытă выртать тет. Темĕн пек хăвалаçан та хуса ярайман. Вара йытă выртса йăванса хĕрарăм пулса тăчĕ тет. Ăна киле кайса кĕписене çуса тасатса янă. Кайран вăл вĕсене тав туса тухса кайнă тет. Вара пирĕн аннен амăшĕсен пĕр выльăх та вилмерĕ тет.

## 1276

Кушак Энтрийĕ Ĕне мурĕ пулса çӳренине пĕтĕм ялĕпех каласа паратчĕ. Ним те пытармастчĕ тата, тухатмăш пулсан та. Вĕсем виççĕн çӳренĕ. Пĕри — куршанкăсем, Селихер Хĕветĕрĕ, тепри — Васан хĕрĕ, хăй пулнă тата. Вăл Тĕрĕкпе вăрçнă вăхăталла пулнă. Энтри вăл йытă та, кушак та, вĕçен кайăк та пулма пĕлетчĕ. Ырă йытă тухатмăш йытта паллать çав.

— Йытă пулсан ял йыттисем тумтире çурса пĕтереççĕ вара, — тесе калатчĕ, — çавăнпа кушак е вĕçен кайăк пулса çӳреттĕмĕр, — тесе калатчĕ.

Пĕрре анатри Михаля пӳрчĕ тăрне ултă вĕçен кайăк пулса улттăн килсе ларнă. Таçтан çапла урампа атте иртсе пынă пирĕн. Кăвакалсем хыççăн та çӳретчĕ вăл. Сехри хăпса тухнă лешсен...

— Çавăн чухне Качака Якурĕнчен хăранă пек ĕмĕрне хăраман, — тетчĕ Кушак Энтрийĕ.

Хăйсене хирĕç Хветут ĕнине пĕр кашăк хăймаллă турăхшăнах вĕлерчĕ.

— Майракине çех тытрăм — ĕне çаврăнса та анчĕ, — тетчĕ.

Леш Васан хĕрне Хайпăла вĕçĕнче пĕр мишер Ĕне мурĕ тесе хĕнесе вĕлерчĕ вара.

## 1277

Пĕр-пĕр яла мур килсе лексен (пурне те вĕлерсе каякан чир) çынсене, выльăхсене, мĕнпур чĕрĕ чуна ĕнтĕ, çĕр витĕр кăларнă тет. Çĕр чавса шăтăк тунă та пĕр вĕçрен кĕрсе тепĕр вĕçĕнчен тухнă. Вара тухатмăшсем, вупăрсем, чирсем çĕр витĕр тухайман тет. Çапла чирсенчен хăтăлнă тет.

## 1278

Вăл мура çынах çӳренĕ тет. Вăл мура çӳрекен çын пысăкланма та пултарать, пĕчĕкленме те пултарать тет. 40 чалăш çӳллĕшĕ пысăкланма пултарать тет. Çавал урлă, Атăл урлă çаплах утса каçаççĕ тет çавăсем. Вара вĕлерсе çӳреççĕ тет. Вăл Муртан хăтăлма хĕр сухи тунă, ял тавра хĕрсем сухана хăйсем туртса çавăрнă. Вĕсем шурă кĕпе-йĕм тăхăнса, çӳçĕсене

салтса, пиçиххине салтса, çара уран, хăшĕ турăш, хăшĕ мелке-турчăка йăтса, хăшĕ параппан çапса пынă. Вара вĕсем ял тавра суха пуçĕпе çĕре чĕртерсе çавăрнă тата хапхана тикĕтпе хĕрес хывнă, вара Муртан сипĕ пулнă.

## Ниш

### 1279

Пĕчĕк ачасен ниш полать. Ача тем чохлĕ çисан та типсе хăрсах пырать. Ваçлия çолталăк çорăра чох ниш ерсе. Çавна вот хотса кăларсан Тимоххи пичи арăмĕ виç хутчен кăмакая чиксе кăларса. Пĕри чӳрече хыçĕнче: «Мĕн пĕçерен?» — тесе итлет. Пӳртри: «Ниш пĕçереп», — тесе калать. Çавна виç хутчен итлеççĕ те виç хутчен кăмакая чиксе кăлараççĕ. Çапла виç кон хăтланаççĕ. Çавна тусан Ваçли йосанчĕ, халĕ те полин чопса çӳрет.

Çолаçра Хветенкке Мари ачасене çапла лартатчĕ тет кăмакая.

## Сив, сăямак

*Сив, Сăя, Сăямак (Сивамак) — усал-тĕсел чирсен амăшĕ.*

*Сивĕ чирĕсене, сивĕ амакĕсене авалхи çын темле хăватсем янă пек ăнланнă. Шăнса пăсăласран мĕнле упранмаллине пĕлмен пирки Сив хаяра юсман е çăмарта парса хăтăлма шутланă.*

### 1280

Сивĕ чир çын пек, унтан тарса мунчана кайса выртмалла тет. Вăл чирлĕ çынна шыраса пырсан çынна ятĕнчен чĕнет. Ăна хирĕç чĕнме юрамасть тет. Çапла вара Сивĕ чир аташса çӳресен-çӳресен урăх çын патне каять тет.

* * *

Сăямак кăтра кăвак, тепĕр чухне хĕрлĕ е симĕс çӳçлĕ те пулать. Виçĕ хĕртен е вун икĕ тăванран çуралнă пулать. Шурлăхра, çăлкуçра, пусăра çын çумне çулăхать, вăхăтра упранмасан сив чирĕпе чирлеттерет.

### 1281

Сивĕ чир виçĕ тĕслĕ пулать тет. Вĕсем виçĕ хĕр пĕртăван тет, пĕри суккăр тет. Сивĕ тытакан çыннăн сивĕ тытас умĕн пытанмалла тет. Вара Сивĕ çыннине тупаймасть тет те Сивĕ пăрахать тет. Чĕнсе шыраса çӳрет тет. Чирлĕ çыннин ăна хирĕç чĕнес çук тет. Пĕри ĕлĕк аван вучахне кайса пытаннă тет. Хайхи кăна: «Микушка! Микушка!» — тесе чĕнет тет. Ку анне чĕнет пулĕ тесе: «Мĕн?» — тесе чĕннĕ тет. Çавăнтах кăна Сивви тытса пăрахрĕ тет. Суккăр Сивĕ çынна тытсан вĕлермесĕр те каймасть тет.

### 1282

Çын шăнса пăсăлсан ăна сив чир ерет тет.

Пĕр хĕрарăм шăнса пăсăлнă та, ăна сив чир ернĕ. Пĕрре çав хĕрарăм сив чиртен хăтăлма шутланă. Вăл кăмакана кĕрсе пытаннă тет. Сив чир

пынă тет те çав хĕрарăма тухма чĕнет тет. Анчах хĕрарăм пĕр сăмах та чĕнмест тет. Сив чир кăшкăрса çӳренĕ-çӳренĕ те кайран чӳречесене çĕмĕрсе тухса кайнă. Çав хĕрарăм вара сив чиртен хăтăлнă.

**1283**

Сивĕ чире хĕрарăм патне арçын пырать теççĕ, арçын патне хĕрарăм пырать теççĕ. Сивĕ чирĕ пурнать тет е çăлта, е шурлăхра. Сивĕ чирĕнчен хăтăлас тесен кăш* çăлтан тухнă, çавăнта е çăкăр сăмси, е çăмарта кайса яраççĕ тет. Аякри çăлти сивĕ чир лекнĕ пулсан вара, кăш енче лекнĕ, çав енне тухса, мише çине шур путвиççи** хурса каçса çилпе çăнăх вĕçтерсе яраççĕ тет. Апата каймасан, вăрмана кайса тимĕр карта çавăрăпăр тесе, пилеш патак чăрса*** çаврăнаç тет те сивĕ тытас умĕн, çав картара çывраççĕ тет. Тата ăна йăранĕ çинчи эрĕме илсе таврăнса, вĕретсе шывне ĕçеççĕ теççĕ.

**1284**

Сивве пĕчĕк ача пулса çӳрет теççĕ. Унăн çӳçĕ вăрăм та, хăй лутра теççĕ. Çав Сивĕрен пытансан вăл тытмасть тет. Тата тунката çине шăтнă пилеш витĕр тухсан пăрахать теççĕ. Унтан тата эрех ĕçсен пăрахать теççĕ; эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ çын патне нихăçан та пымасть тет вара.

**1285**

Шăнтакан чир похраран полнă тет Вăрманкас Штанашри Симун.

Пĕр салтак киле таврăнать. Вăл кĕпер карлăкĕ çине канма ларнă. Кĕпер айĕнче Шăнтаканпа тепĕр чир лараççĕ тет. Шăнтакан: «Эпĕ апат çинĕ хошăра похра полса кĕрсе каятăп», — тенĕ. Салтак хваттяра кĕрет. Шăнтакан ун хыççăн пырать. Салтака уйран сыпма лартаççĕ, ку çимеç.

Кайран хăная кайсан салтак ĕçкеленĕ те асăрхаман — Шăнтакан кĕрсе кайнă.

**1286**

Сив чирсем порте пĕртăван тет. Вăсам малтан вон иккĕн полнă, кайран пĕри хăй поçне çинĕ тет. Вăл ак мĕлле полнă тет. Пĕрре сив чирсем порте пĕрлешнĕ тет те пĕр кĕпер орлă каçса каяççĕ тет. Çав кĕпер айĕнчех пĕр сив чирлĕ çын вăрăсенчен хăраса пытаннăскер ларать тет: «Эпĕ çын ăшне пăтăпа пĕрле малтанхи кашăкра кĕрсе каятăп», — тесе калать тет пĕри. Ыттисем мĕн каланине илтимарĕ тет. Кайран, киле таврăнсан, арăмне часрах пăтă пĕçерттерчĕ тет те апат çиме ларнă чух такмак илсе ларчĕ тет. Онтан малтанхи кашăкне ăсса тоти патне илсе пычĕ тет те часрах такмака яра пачĕ тет пăттине; вара такмакне хытă шатăртаттарса çыхса хочĕ тет. Çав такмакра Сив чир халь те полин коптăртаттарать тет. Çапла ĕнтĕ Сив чир халĕ вон пĕр анчах йолнă тет.

---

* Хăш.
** Вутпуççи.
*** Чĕрсе.

## 1287

Сăямак вăл шыв тытсан ерет: ăçта та пулин шыв хĕрринче хăрасассăн, ури шыва путсассăн, кĕт çӳçенсессĕн ерет. Сăямака ярас тесен шыва çăмарта (чăх çăмарти) кайса ямалла е чĕрĕ сала кайăк кайса ямалла — вара сăямак ярать.

Ĕлĕк пĕри каç пулнă чух пырать тет пĕр кĕпер çинелле. Тем калаçнă сасă илтĕнет тет кĕпер айĕнче. Ку çын чарăнса тăрсах хытă итлерĕ тет. Пĕри хытăрах сасăпа ак çапла калать: «Эсĕ çав ялти çав çын патне кай та урен* çинĕ чух авра пăрчăк** пулса кашăк ăшне кĕр, эсĕ первехи кашăк çине ан кĕр, виççĕмĕш кашăк çине кĕр», — терĕ тет. (Хайхисем çак çын ятнех асăнаççĕ тет.) Çапла вара çавăнта пĕри нумайăшне кала-кала ячĕ тет.

Çак çын киле пырсан урен антарса лартрĕ тет, илсе кĕчĕ тет такмак, виçĕ хутчен ăса-ăса илчĕ тет урене такмак ăшне, кайран такмака çыхрĕ тет те, такмак тапратрĕ тет чĕтремешкĕн, хайхи Сăямак виçĕ кун такмак ăшĕнче пурăнчĕ тет. Çын вара кăларса ячĕ тет ăна. Леш начарланса кайнă тет пĕтĕмпех.

## 1288

Сив чир çын пек сăмахласа ушкăнĕпе çӳрет тет. Пĕрре пĕр çын ял патĕнче кĕпер айĕнче пытанса итлесе тăнă тет. Сив чирсем шăкăлтатса сăмахласа пыраççĕ тет. Пĕри калать тет эпĕ çавăн патне каятăп тесе. Тепри — теприн патне, вĕсенчен пĕри кĕпер айĕнче пытанса тăракан çын патне кĕрсе, ун ăшне пирвайхи кашăкри çăмахпа кĕретĕп тесе каларĕ тет. Кайнă чухне каллех çав кĕпер патне çав кун пуçтарăнас тесе сăмах пĕтерчĕç тет. Çын кĕпер айĕнчен тухать тет те килне таврăнать тет. Яшка çиме ларсан пирвайхи кашăкне çăмах-мĕннипех шăпăр хăмпи ăшне ячĕ тет те çыхса лартрĕ тет. Сив чир вăхăчĕ-вăхăчĕпе хăмпăна шакăр-шакăр, капăр-капăр тăвтарать тет те чĕтретет тет. Сив чирсем кĕпер патне пуçтарăнма канаш тунă вăхăт çите пуçласан, çын хăмпă ăшĕнчен Сив чире кăларса ячĕ тет те хăй каллех кĕпер айне итлеме кайрĕ тет. Сив чирсем пуçтарăнчĕç тет те мухтана пуçларĕç тет. Пĕри те пĕри манăн апат питĕ-питĕ аван пулчĕ тесе мухтанаççĕ тет. Пĕри калать тет: эпĕ чут вилеттĕм, мана хăмпă ăшне хупрĕç те пĕр çăмах анчах пачĕç тесе калать тет.

## 1289

Пирĕн чăвашсем сивĕ тытнине акă епле пĕлнĕ теççĕ. Ĕлĕк пĕр çын çавăн пек япаласенĕн чĕлхине пĕлнĕ тет. Пĕрре çав çын нӳхрепе уйран илме кайнă тет те, уйран чашăкĕ çине çав сивĕ чир çӳп пулса пырса ӳкнĕ тет. Çынни ăна мĕн иккенне пĕлсе кашăкпа ăсса илнĕ тет те пĕр хур шăмми (тĕк шăмми) ăшне ярса хунă тет. Вăл вара çав хур шăмми ăшĕнче çичĕ çулччен, çав çын яманнипе, ниепле те тухаймасăр пурăннă тет. Çав çичĕ çул хушшинче Сивĕ чир пит начарланса çитсе вилес пек пулнă тет. Çын ăна пит начарланнине кура, çичĕ çул иртсен кăларса янă тет. Çавăнпа ĕнтĕ Сивĕ чир те çичĕ çула пырать, унтан иртсен хăех пăрахать теççĕ.

---

* Уйран.
** Арпа пĕрчи.

Сивĕ чир вăл çынах. Çын çапла çынна ăшне кĕрсе çичĕ çулччен начарлатса тăрать, унтан иртсен текех пурăнаймасть, хăех тухса каять теççĕ. Çавăнпа çын та, сивĕ чирпе асапланаканни, тем чул асаплансан та вилмест пулать, çичĕ çул иртсен хăех чĕрĕлет имĕш.

### 1290

Пĕр ялта пĕр Мĕкĕте ятлă çынна Сив чир тытнă. Çакă питĕ начарланса кайнă. Пĕррехинче вăл кÿршĕ яла каять. Çул çинче пĕр кĕпер айне çăмăл тума кĕрет. Çав вăхăтра кĕпер çине икĕ йĕкĕт çитрĕç тет, калаçса лараççĕ тет. Асли пит начар тет, кĕçĕнни самăркка тет. Кĕпер айĕнчи Мĕкĕте: «Кусем мĕн сăмахлаççĕ-ха», — тесе тăнласа тăрать. Йĕкĕтсем иккен сив чирсем пулнă. Асли кĕçĕннине Мĕкĕтене тытма ярать тет, калать тет:

— Эсĕ çав яла кай, çав Мĕкĕтене лайăх тыт, — тет.

Кĕçĕнни:

— Эпĕ ăна тытма пăрахнăччĕ-ха, халĕ каллех тытам, Мĕкĕтене пĕрмай типĕтсе ярам, — тет.

Асли:

— Тульăк кутамккине ан лек, унăн сăранран тунă хутаç пур, — тет.

— Эсĕ унăн ăшне мĕнле кĕретĕн? — тесе ыйтать кĕçĕнни.

— Эпĕ Мĕкĕтене яшка çинĕ чух чашăк çине хăрăм пулса каятăпчĕ, — тет асли.

Çапла сăмахларĕç те тепĕр уйăхран каллех çав кĕпер çине килсе курнăçма, тĕл пулма калаçса татăлчĕç тет, уйрăлса кайрĕç тет.

Мĕкĕте вĕсем калаçнине тăнласа тăчĕ тет те кусем кайсанах килелле утрĕ тет, хăй: «Акă эпĕ ăна лектерем-ха кутамккана», — тесе пырать тет. Киле çитрĕ тет, яшка пĕçерчĕ тет, çиме ларчĕ тет. Пăхать тет, яшка çинче хăрăм çÿрет тет. Мĕкĕте çакна кашăкпа ăсса илчĕ тет те кутамккана ячĕ тет. Унччен те пулмарĕ тет, Сив чир кутамккара кĕпĕртеттерме пуçларĕ тет, анчах тухаймасть тет. Çапла Мĕкĕте чĕрĕлчĕ тет.

Пĕр уйăх иртеспе Мĕкĕте кутамккана салтрĕ тет, Сив чире кăларса ячĕ тет. Пĕр уйăх çитнĕ кун Мĕкĕте каллех çав кĕпер айне кайса ларчĕ тет. Сив чирсем мĕн калаçнине пĕлме. Икĕ Сив чир каллех кĕпер çине пычĕç тет. Асли кĕçĕннинчен:

— Кутамккана лекрĕ-и-мĕн, — тет, — начарланса кайнă? — тесе ыйтать тет, хăй пит самăрланса кайнă тет.

Кĕçĕнни:

— Ку шуйттан Мĕкĕти пĕтерчĕ мана, тек каймастăп, — тесе каларĕ тет. Çапла Мĕкĕте Сив чиртен хăтăлчĕ тет.

## Типери

*Типери, Типири, Типпи, Тип ийе тени чăваш ĕненĕвĕнче икĕ ăнлавпа тĕл пулать. Пĕри — çынна ерсен типĕтсе яракан усал. Вăл çынна урмăштарать, вăрçтарать, чĕнми тăвать. Тепри — çынсене çилленсен çиллĕ тăвăл кăларса, хуралтăсене ишсе, çĕмĕрсе каякан е пăр çунтарса тырăсене пĕтерекен хаяр.*

### 1291

Вӑл «пысӑк тинӗс урлӑ, тӗнче хӗрринче» пурӑнать. Уяр вӑхӑтра ҫавра ҫил пулса ҫӳрет, ҫынна ҫулӑхсан ҫыннӑн тутине пӑсать. Типерине килӗштерме, ун ячӗпе чӳклеме е ун чӗлхине пӗлме пултаракан ҫук теҫҫӗ.

Типери вӑл, вӗрӳҫӗсем каланипе, чӑн хаяр турӑ. Вӑл ҫынсене ҫилленсен ҫиллӗ тӑвӑл кӑларса хуралтӑсене пӗтӗмпе ишсе, ҫӗмӗрсе, улӑм вителӗкӗсене сирсе ывӑтса каять тата шӑп тырӑ ӗлкӗрсен ҫил-тӑвӑллӑ пӑр ҫутарса тырӑсене пӗтерет теҫҫӗ.

### 1292

Типери вӑл Ийе пекех ҫулӑхать теҫҫӗ. Типери уяр вӑхӑтра ҫавра ҫил ҫӳренӗ чух ҫул каякан ҫынна лексенех ҫулӑхать. Вӑл ҫулӑхсан ҫыннӑн тутине пӑсать, пӑссан ҫыннӑн тутине тирне тек каллӗ-маллӗ вылятать теҫҫӗ.

Типери вӑл таҫта аякра, «пысӑк тинӗс урлӑ, тӗнче хӗрринче» пурӑнать. Ҫынсене ҫилленсен ҫумӑр ҫутармасть, хӑй вара ҫавра ҫилпе вылямa тухать теҫҫӗ.

Типери чӗлхине тата хывса пӗр-пӗр тутлӑ ҫимӗҫ тӑкма пӗлекен ҫук.

## Тӳм-тӳм

### 1293

Тӳм-тӳм папай, тӗпсакайӗнчен ан тухах, вӑрҫӑ сӑмахне ан кӑларах. (Тӳм-тӳм папай тесе тӗпсакайӗнче пурӑнакан ватта калаҫҫӗ.)

## Хытӑм

*Хытӑм, хӑтӑм, хӑт — ҫынна, выльӑх-чӗрлӗхе пӑхса тӑракан хӑват. Выльӑх лайӑх ӗрчесен, тӗрӗс-тӗкел пурӑнсан ҫав картана хӑтлӑ карта теҫҫӗ, выльӑх чакса пырать, ӑнмасть пулсан хӑтсӑр карта теҫҫӗ.*

### 1294

Тӑлӑх-турат, килсӗр-мӗнсӗр ҫын вилсен чунне асӑнакан ҫук чухне, тӑлӑх ҫын хӗре качча илме килӗшсе авланиччен вилсен хӑтӑм пулать, илес хӗрӗ те хӑтӑма тухать. Качча кайнӑ хӗр те тӑван килти карта хӑтӑмне кӗлтумалла, унсӑрӑн ун выльӑхӗсем вилсе пӗтеҫҫӗ.

### 1295

Хытӑм (хӑтӑм) чирне (шӑм-шака хытарса тӑракан чире) усал вӑй тесе чӳкле ҫырлахтарнӑ: сӑра тунӑ, юсман пӗҫернӗ.

1296

Ватă çынсен çывăрнă чух шăн-шак хытса выртсан уна Хытăм чӳк тесе каланă. Уна асăнса тăвăпăр тесе е салат, е хăмла, е çăнăх пĕр çĕре тутăрпа çыхса чул айне хунă тит, çав чул айĕнче çичĕ çул выртнă тит. Çич сыпăкран е салтака кайнă ачана кĕтнĕ, е качча кайнă хĕрсене шыраса йĕрлесе тупнă, вĕсем вара çич сыпăкри хурăнташсемпе сăра тунă тата пухнă çăнăхсенчен юсман тунă та сăрине ĕçнĕ чухне пĕри те, тепри те каланă хытарса пăрахать тесе, вара пурăнарахпа тӳрленĕ-ха тенĕ.

## Чăкарми

1297

Чăкарми ятлă усал çиелтен пăхма илемсĕр, хăрушă, пусĕ, хырăмĕ пысăк. Хăй лутра, урисем çинçешке, пичĕ-куçĕ хăрăм пек. Чăвашсем ача кутăнлашса йĕрет пулсан: «Чăкарми тытать, чарăн!» — тенĕ.

## Тытан амак

1298

Чир-чĕр ярса усал тăвакансен шутне тытан амак кĕрет. Мĕнле те пулин усал сывлăш тытса силленĕрен пулать тенĕ тытан амак.

## Шатăн

*«Шадын» сăмах еврей чĕлхинчен кĕнĕ: шуж — шед, нумайлă хисепре «шедим» хура вăя, усала пĕлтерет. Араб чĕлхинче илемсĕр, хăрушă япалана çапла каласçĕ, авалах тĕрĕк чĕлхинче шад — визир, каган хыççăнхи пĕрремĕш çын, ăру-несĕл пуçлăхĕ. Пĕлтерĕшĕ вупăра, ийене çывăх. Шатăн чĕлхинче вĕсене пĕрин хыççăн теприне асăнаççĕ.*

1299

Шатăн, шатăм — çын ăшне кĕрсе шăм-шака хуçса аптратакан усал сывлăш. Шатăн чĕлхи: «Тох, ийе, тох, вупăр, тох, шатăн!» — теççĕ; чирлĕ çыннине: «Пӳрт ийи, вупăрĕ, шатăнĕ, тухăр», — тесе шăлан хуллипе çапаççĕ.

## Усал-тĕсел эсремечĕ. Пăскăнлăх

*Çӳлти тĕнчен туррисемпе ыррисен çĕр çинчи ĕçне туса пыраканĕсем пӳлĕхçĕсемпе мăчавăрсем пулсан, çут тĕнчери усал-тĕселсемпе хаярсен ани çинче тухатмăш, пăскăнçă, сулуçă, суруçă, пĕлĕмçĕсем ĕçленĕ. Халăхра çынна сăмахпа пулăшма е сиенлеме пултаракан çынсем (экстрасенссем, гипноз ăстисем)*

*яланах пурăннă. Ку ăсталăх, тен, авалхи шаманлăхранах упранса килнĕ. Анчах этемлĕх аталанса пынăçемĕн тĕшмĕшпе тухтамăш ĕçĕсене çынсем сирсе пĕтерме тăрăшса пынă. Çавăнпа пăскăчсемпе тухатмăшсене йытă, кушак, выльăх-чĕрлĕх вырăнне хума, тĕл пулмассерен асаплама хăтланнă.*

*Аваллăхра этем Çутăпа Тĕттĕме, Ырăпа Хаяра ĕненсе пурăннă, çавăнпа киреметпе юнашар эсремет йĕркеленĕ. Эсремет йĕркисене пĕлекен пăскăнçăсен ĕçĕ тупăнсах тăнă. Танмарлăх чухне тăшмана усал сунасси сăваплă ĕçех шутланнă. Тухатмăшсем вĕрӳ-сурура юмăçсем пекех çут çанталăкри тĕрлĕ им-çампа усă курнă. Вĕсем йывăç-курăк е çĕрпе шыв сипне-сиенне витĕр пĕлнĕ. Юмăçсене çынна сыватма, чĕртме чĕннĕ пулсан, тухатмăшсем тăшмана пĕтерме, чирлеттерме тăрăшнă. Каярахпа ют тĕнсен витĕмĕпе вĕсене пурне те тиркенĕ. Юмăçсемпе тухатмăшсене, мăчавăрсемпе апăссене тустарма пуçланă.*

*Чăваш ялĕсенче унта-кунта пăт-пат хисеплĕ ăстасем, этем ӳт-тирне, кĕлеткине тухтăрсем пек витĕр пĕлекен карчăк-кĕрчĕксем — XXI ĕмĕрчченех пурăнчĕç. Рентгенсăр, нимле аппаратсăрах вĕсем ал-ура сикнисене, хуçăлнисене, тапраннисене вырăна лартма пĕлеççĕ, ăш-чик, вар-хырăм ыратнисене эмелсĕрех иртерсе яраççĕ. Шел, çав ăсталăха тĕпчесе вĕреннĕ, çырса юлнă пулсан чăвашсен тепĕр хут «Авиценна кĕнеки» çырăннă пулĕччĕ.*

*Халĕ чылай çĕрте киремет йăли-йĕркисене иртереççĕ. Эсреметсем сыхланса юлни паллă мар. Эсремет вырăнĕсемпе тухатмăшсем çинчен юмахсенче кăна асăнаççĕ.*

## Юхха

### 1300

Юхха çĕлентен пулнă япала теççĕ. Çĕлен çĕр çула çитсессĕн мĕн пулать тесен те пулать теççĕ: этем пулсан та пулать теççĕ, этеме улталать теççĕ.

Ун çинчен çапла халап калаççĕ. Пĕр патшанăн сунарçă ывăлĕ пулнă тет. Вăл пĕрре, те хирте сунарта çӳренĕ чух, пĕр вăрманта пит илемлĕ хĕр тĕл пулнă тет. Вăл хĕр çав ачана каланă тет:

— Эсĕ мана качча илетни? Эп сана качча пырап, — тенĕ тет.

Ача каланă тет:

— Илеп, — тенĕ.

Вара вĕсем килне таврăнса туй тунă тет. Туй тусан, кайран, çав ача пит начарланнă тет. Вара вăл юмăçа кайнă тет пĕр вăпăрлă карчăк патне. Вăл карчăк каланă:

— Эсĕ илнĕ хĕр лайăх хĕр мар пулĕ, эсĕ ăна сăнаса пăх: тăварлă апат çитер те, каç выртнă чух пӳрте шыв ан лартăр. Каç вара, выртнă чух, ху сăнаса вырт вăл мĕн тунине.

Вăл ача вара килне кайса карчăк каланă пек тунă: тăварлă апат çитернĕ те пӳрте шыв хăварман. Каç выртсассăн вăл хĕрĕн ӳчĕ вырăн çинчех выртнă, çăварĕнчен вут пек тăсăлса тухса пӳртре шыв шырарĕ тет. Пӳртре шыв пулманран чӳречерен вут пек тăсăлса тухса, çырмана кайса шыв ĕçсе килчĕ тет. Ачи вара ирхине тăрсан хай карчăк патне кайрĕ тет. Карчăк каларĕ тет:

— Апла пулсан вăл сана пĕтерĕ, эсĕ ху малтан ăна пĕтерме тăрăш. Ăна эсĕ ак çапла ту: пĕр çĕре пит пысăк çурт тутар, ун тавралла тип вутă

купалаттар; унта вара эсӗ унпа пӗрле хӑнана кай. Хӑнана кайсан ӑна, мӗнле те пулин, пӳрте пӗччен хӑварса питӗрсе ил. Унтан вара ҫурт таврашӗнчи вутта тӗртсе ҫурчӗпех ҫунтарса яр.

Ҫав ача вара карчӑк каланӑ пек тунӑ, ҫав ҫурта хӑнана кайнӑ. Таврӑнма тухнӑ чух ҫав ача хӑйӗн пушмакне пӳрте хӑварнӑ тет. Тухса урапи ҫине ларсан ача каларӗ тет:

— Манӑн пӗр пушмак юлнӑ-ҫке, эсӗ кӗрсе илсе тух-ха, — тенӗ.

Арӑмӗ каланӑ:

— Эсӗ ху кӗрсе илсе тух, эпӗ кӗместӗп, — тенӗ.

Ачи каланӑ:

— Эсӗ манӑн арӑм пулсан ҫавна та илместӗн-им? — тенӗ.

Арӑмӗ вара чупса кӗчӗ тет пӳрте пушмак илме. Алӑк умӗнчи хуралҫисем вӑл кӗрсенех пӳрт алӑкӗсене питӗрсе илчӗҫ тет. Вара леш пӳртре енчен енне пыра-пыра кӗрӗслетсе ҫапӑнса ҫӳрет тет. Вара пӳрчӗ-мӗнӗпе ҫавӑнта ҫунтарса ячӗҫ тет. Вӑл ача вара кайран пӑсӑлнӑ тет.

## Тухатмӑш

### 1301

Чӑвашсем тухатмӑшсенчен питӗ хӑраҫҫӗ. Тухатмӑшсем тӗслӗрен тухатса ҫынсене хӗн кӑтартса вӗлереҫҫӗ теҫҫӗ. Тухатмӑшсем ӗлӗксенче питӗ нумай пулнӑ теҫҫӗ. Вӗсем арҫынран та, хӗрарӑмран та пулнӑ. Тухатмӑш пуласси йӑхран йӑха пынӑ тет. Амӑшӗ тухатмӑш пулсан хӗрӗ те тухатмӑш пулнӑ тет. Тухатмӑшсен ӑшра кӑкӑр шӑмми айӗнче чӑмӑр пек тухатмӑш муклашки (хытти) пулать тет. Хӑш-хӑш тухатмӑш питӗ усал пулать тет, ун пек тухатмӑш ҫынсене тухтаса вӗлерет тет, хӑшӗ тата ҫынсене тухатас вырӑнне йывӑҫсене, вӗҫен кайӑксене анчах тухатать тет. Тухатмӑшсем леш тӗнчере питӗ хӗн курса пурӑнаҫҫӗ тет.

Кушкӑра пӗр ватӑ карчӑк пурӑннӑ, вӑл карчӑка ҫынсем пурте тухатмӑш тенӗ. Пӗрре ҫак карчӑк чирленӗ. Вӑл питӗ хӗн курнӑ, пуҫне хӗрӗсене кунӗпе, ҫӗрӗпе сивӗ шывпа ҫутарса тӑнӑ. Тихӑнӑвски кунӗ янкӑр уяр пулнӑ, хӗртсе хӗвел пӑхнӑ. Пӗлӗтре пӗр хура пӗлӗт те пулман. Сасартӑк пӗр ҫӗлӗк пек ҫумӑр пӗлӗчӗ тухнӑ та Кушкӑ патнелле шуса пынӑ. Кушкӑ патне ҫитнӗпе пысӑкланнӑҫем пысӑкланса кайнӑ та, унтан шӑп кӑнтӑрла аслати авӑтма тытӑннӑ, витрелетсе пӑрлӑ ҫумӑр ҫунӑ. Шӑп ҫав вӑхӑтра тухатмӑш карчӑкӑн чунӗ тухса кайнӑ. Вилнӗ чухне вӑл: «Ҫитмӗл ҫичӗ ҫулта ҫитмӗл ҫичӗ ҫын пуҫне ҫирӗм», — тесе каларӗ тет.

### 1302

Тухатмӑшсем пӗр-пӗринпе тавлашаҫҫӗ те тет, пӗр-пӗрне пӑсма тӑрӑшаҫҫӗ тет. Ҫынна мӗнле тухатмӑш пӑснине пӗлеҫҫӗ тет. Пӗрре ӗҫкӗ вӑхӑтӗнче пӗр ютран килнӗ старик ӗҫкӗ ӗҫсе Сулахай старик патӗнче ларать тет. Чӳречерен хирте пӗр пӑшалҫӑ йӗлтӗрпе ҫӳрени курӑнать тет. Ӗҫкӗ ӗҫсе ларакан старик хӑна: «Пӑхӑр-ха, ку пӑшалҫа мӗн пулчӗ? Мӗнле утса ҫӳрет вӑл?» — тесе калать тет. Пӑшалҫӑ чӑнах та пуҫхӗрлӗ тӑнӑ та, йӗлтӗрсене ҫӳлелле йӑтнӑ тет. Унтан татах ура ҫине тӑрать тет те каллех пуҫхӗрлӗ тӑрать тет. Пӳртри ҫынсем пурте чӳречерен пӑхса тӑрса ӑнтан кайса: «Мӗн пулчӗ ку пӑшалҫа?» — тесе калаҫҫӗ тет. Пӑшалҫӑ пайтахчен аппалансан-аппа-

лансан тăрать тет те тӳрех хăнасем пуҫтарăнса ларнă пӳрте пырса кĕрет тет. Ку пăшалҫă пӳрте пырса кĕнĕ чух хай ютран килнĕ ватă хăна нимĕн тума та пĕлмест тет, куҫне-пуҫне чĕтрете пуҫларĕ тет: «Ăш ҫунать, манран вăйли килет», — тесе калать тет. Пăшалҫă пӳрте кĕрсен хай старик урайне кайса ӳкрĕ тет те тĕслĕрен хăтланать тет. Хуҫкаланать тет, месерле выртса урисемпе тĕпĕртетет тет, пуҫхĕрлĕ те тăрса пăхать тет. Ҫапла хăтлансан-хăтлансан халтан кайрĕ тет. Пăшалҫă вара: «Ҫитрĕ ĕнтĕ, чарăн, ӳлĕмрен хăнтан аслипе ан тавлаш», — тесе каларĕ тет. Старик тăрса сĕтел хушшине ларчĕ тет те чиперех ĕҫкĕ ĕҫме тытăнчĕ тет. Старикпе пăшалҫă иккĕшĕ те тухатмăшсем пулнă тет иккен.

### 1303

Тухатмăш та ҫав ăрăмҫă манирлĕрех. Тухатмăш япала ҫине сăмах каласа ҫитерсе вĕлерет ҫынна: вăл ҫăмарта ҫине тухатса пама пултарать, ҫу ҫине, вообще мĕнле ҫимелли япала ҫине.

### 1304

Тухатмăш вăл ҫынах. Тухатмăш пулать арҫын та, хĕрарăм та. Ҫамрăксенчен питĕ сахал. Ваттисенчен нумай. Тухатмăш ҫынна вĕрентме хăй патне илмест. Тухатмăшсем вĕсем сысна та пулаҫҫĕ, хур та пулаҫҫĕ, кушак та пулаҫҫĕ, йытă та пулаҫҫĕ. Вĕсем тĕрлĕ япала пулма пултараҫҫĕ. Вĕсем тухатма пăлхавăшни каҫ та, калăм каҫ та каяҫҫĕ. Ҫавăнпа халăхсем, тухатмăшран хăраканнисем, пăлхавăшни каҫ тата калăм каҫ тулта япала тăратма хăраҫҫĕ. Тухатмăш касса каять теҫҫĕ. Тухатмăшран хăраман ҫынсем пăлхавăшни каҫ та, калăм каҫ та тухатмăшсене сыхлама каяҫҫĕ мунчана. Вăл каҫ ушкăнĕ-ушкăнĕпе ҫӳреҫҫĕ. Вĕсем тухса кайнă чух та кушак пулса трупаран тухаҫҫĕ, кĕнĕ чух та трупаран кĕреҫҫĕ.

Пĕрре эпĕ авлансан нумайран мар икĕ юлташпа мунчана калăм каҫ тухатмăш сыхлама кайрăм. Шăп ҫур ҫĕр тĕлĕнче пырса кĕчĕҫ пĕр ушкăн кушак. Эпир пĕрне тытса хӳрине касса ярас тесе хатĕрленнĕччĕ, унччен те пулмарĕ — вĕсем тухса тарса пĕтрĕҫ. Ҫав каҫах Пӳлер кӳлĕнче, пиртен пĕр 7 ҫухрăмра, тухатмăш сыхлама кайнă ҫынсем пĕр йыттин хӳрине тытса касса янă. Вара ирхине килне пырса ҫыврăнă. Ирхине тăрать те вĕсен карчăккин, асламăшин, ҫип тунийĕ татăкне курать. Вăл ăна тухатмăш иккенне пĕлмен. Ҫынсем каласан та шанман. Тухатмăшсем калăм каҫпа пăлхавăшни каҫ ҫынна тухатма, пăсма каяҫҫĕ. Ҫынна хыт-хурана асăнса пăссан вăл ҫын хыт-хура пек типсе хăрса вилет. Ҫын чирлесен вилессине ак ҫакăнтан пĕлеҫҫĕ. Ҫыннăн вилес умĕн икĕ ури те чĕркуҫ таран сивĕнет. Ура питĕнче тапакан тымар ҫухалать; алă тымарĕ хулленленет. Вара чирлĕ ҫын пуҫ вĕҫне чашăкпа шыв лартаҫҫĕ. Ҫыннăн чунĕ тухсан ҫавăнтан чӳхенсе тухса кайтăр теҫҫĕ. Ҫын вилмесĕр пит нумай асапланса выртсан, ăна вара ҫылăхне ҫуса выртать теҫҫĕ. Тухатмăш вилеймесĕр выртсан, ăна вара тухатмăшне никама та парса хăвараймасăр выртать теҫҫĕ. Тухатмăш чăнахах та тухатать. Пирĕн Кив Саврăшра хурăнташ пур. Унта Евлинка ятлă ҫыннăн ĕнине тухатмăш тухатса вĕлерчĕ. Ĕни вилсен ăшне касса пăхрĕҫ те, чĕри варринчен ҫĕленпе калта тухрĕ. Ҫав ҫĕленпе калтине вĕсем кăмака ҫумне тăмпа шăлса хучĕҫ. Ăна кăмака ҫумне тăмпа шăлсан тухатмăшин пичĕ-куҫĕ пĕркеленсе кайса чирлесе

выртать тет. Вара вăл çав çынсенчен япала илсе кайма тăрăшать. Ун чух вара япала парасран сыхланса тăрас пулать. Çав çĕлен-калта тухнă ĕнен чĕрине касса кушаккине панă та, кушакки та вара мĕкĕрсе вилчĕ тет. Хăш та пĕр çын çавăн пек çĕлен-калта тухсан тикĕт лакăмне ярса, ăна вăрман хĕрне кайса çунтараççĕ. Тухатмăш вăл çынна та, выльăха та пăсать. Çын тухатмăш пăсса чĕрепе аптăрасан тикĕт ĕçеççĕ. Вара тикĕт ĕçсен хăсса кăларсан, çӳрекен пулать. Çуртра чирлĕ çын пулсан, ăна тухатмăш тухатнă пулсан тухатмăшне тунине таврас тесе çын тунă курăк тымарне тураса, ăна çырма шывĕпе вĕретсе, пулăштух кĕленчи çине тултарса алăк айне хăмапа курăнмалла мар туса хураççĕ. Вара тухатмăшне кайса чĕнсе килсе çав кĕленче урлă каçараççĕ. Çапла тусан вара тухатни хăйне лекет тет. Ăна кĕленче урлă каçарма вăрттăн каçараççĕ. Хăй пĕлсен вăл ун урлă каçмасть. Тухатмăш кашни уйăхра пĕрре тухатмасан пурăнаймасть тет. Çынна тухатмасан турпаса та пулин тухатса парать. Вара урамра выртакан турпас пĕр çилсĕр хăйне хăй сиккелесе выртать. Тухатас вăхăт çитсен тухатаймасан вăл хăй чирлет тет.

## 1305

Çимĕк каç тухатмăшсем асаççĕ тет, хăшĕ ухват çине утланса, хăшĕ мелке çине утланса çӳреççĕ тет. И тата вĕçеççĕ тет хăшĕ-хăшĕ пĕлĕт çинелле. Пирĕн чăвашсем хăшĕ каçранах куракан пур тухатмăшсем мĕнле пăснине. Киремете каяççĕ тет, унта пĕри сăрт тăрне ухса выртать тет, тепри çырмара выртать тет. Çыннăнне пыр çыххи, йĕм кантри е çӳçне касса илсе каяççĕ тет, вара çавсене çĕр айне вараççĕ тет тухатмăшсем пăсса, вара хĕн курмалла пулать çав çыннăн.

## 1306

Тухатмăшсем тата çимĕк каç та тухатмăша çӳреççĕ тет. Çав каç тухатмăшсен çичĕ масар çине çитмелле тенĕ. Пĕр салтак слушпăран таврăннă тет. Çак салтак çимĕк каç пĕр яла çитсе карчăкпа старик патне кĕрсе выртнă. Ют çĕрте салтак час çывăрса каяйман тет. Тек кăмака çинче унăн-кунăн йăваланса выртать тет. Тек унăн-кунăн çӳреççĕ тет. Кĕсем мана вĕлересшĕнтĕр тесе калать тет салтак. Унччен те пулмасть тет, карчăк пĕр савăтран темскер илсе куçĕсене сĕрет тет те тĕнĕрен тухса каять тет. Унтан старикĕ те тĕнĕрен тухса каять тет. Салтак кăмака çинчен анать тет те кĕсем мĕн сĕрчĕç-ши, ăçта кайрĕç-ши тесе тĕлĕнсе тăрать тет. Сĕтел çинче хай карчăкпа старик сĕрнĕ япала савăтпа лара парать тет. Пӳртре урайĕнче пăру выртать тет. Салтак мĕн те пулин пулĕ тесе малтан çав пăрăва сĕрсе пăхать тет. Унччен те пулмасть тет, пăру тĕнĕрен вăшт турĕ тет. Салтак тĕлĕнсе тăрать тет. «Ан тив-ха, эпĕ те сĕрсе пăхам, хама мĕн курма çырнă, çавна курам», — терĕ тет те сĕрчĕ тет. Ку тĕнĕрен тухса кайрĕ тет. Масар çинче темĕн чухлĕ çын тет. Хăшĕ кушакла макăраççĕ, хăшĕ йытăлла вĕреççĕ тет. Масар çине апăш та тăвăш тет. Хай салтака карчăкпа старик курах каяççĕ тет. Чупса пыраççĕ тет те: «Эсĕ мĕн тума килтĕн кунта?» — тесе ыйтаççĕ тет. Унтан салтака кăвак лаша çине утлантарса киле яраççĕ тет, аллине нухайка параççĕ тет. Киле пырсан лашине юпа çумне кăкарса хума хушаççĕ тет. Салтак хваттире çитсен лашине юпа çумне кăкарса пӳрте кĕрет

тет. Аранçĕ тăрсан тухса пăхать тет, лаша пуччуши (хуппине сӳнĕ çăка) пулнă тет. Автан авăтсан карчăкпа старик те таврăнаççĕ тет. Ирхине салтака апатлантарса кăларса яраççĕ тет.

## 1307

Тухатмăшсене калаççĕ, сысна, йытă, ĕне, кушак пулса çӳрет теççĕ, масар çине сулма каяççĕ теççĕ.

## 1308

Ашшĕ е амăшĕ тухатмăш пулсан, пĕр-пĕр ачине вĕрентсе хăвармасан çӳлти патшалăха кĕмеç теççĕ. Ахаль пулсан тухатмăшсем çĕр çинче пĕтнĕ пулĕччĕç, ашшĕсем вĕрентсе хăвармасан.

## 1309

Тухатмăшсем вĕсем — хĕрарăмсем. Вĕсем мĕнле пăсаççĕ: этемĕнне çӳçне е кĕпе-йĕмне касса илсе каяççĕ, вара киремете кайса çĕр айне вараççĕ. Вара леш çын хĕн курма пуçлать. Киремете кайнă чух вĕсем çӳçĕсене салатса, пиçиххине салатса, ухват-мелке çине утланса каяççĕ тет. Тата киреметри йăвăç туратне кукăртса авса çыхса хăвараççĕ тет. Вăл тухатмăш мĕн чул çын пĕтерет, мĕн чул выльăх вĕлерет. Пирĕн чăваш нимрен ытла тухатмăшран питĕ хăрать. Хальхи саманара питех хăрамаççĕ.

## 1310

Тухатмăш тума пĕлекен çын курайман çынна час-часах пĕтерсе хурать. Май килсен е хăйне, е лашине тата ытти япалисене те тухатса парать. Кайран, выльăхĕ вилсессĕн, çав выльăх ăшĕнчен туса панă япаласем тухаççĕ. Çĕлен, калта, шапа, кушак кайăк, йĕке хӳресем тухаççĕ тет.

Тухатмăшсен çимĕк каç пĕр-пĕр çĕре кайса çӳрес пулать тет, унсăрăн усалсем каçхине пырса уна вĕлереççĕ. Çавăнпа вĕсем каç пулсан уя тухса çӳреççĕ. Çынсем ан паллаччăр тесе тухатмăшсем кирек епле выльăх пулса çӳреççĕ.

Çапла пĕр тухатмăш çимĕк каç тухнă тет. Çак çын ан паллаччăр тесе пĕрре йăваланчĕ тет те вăкăр пулса тăчĕ тет. Çав вăхăтрах пĕр çын хăнаран киле таврăнать пулнă тет. Вăкăр тырă çинче çӳренине курать тет те куна тырă çинче çитерсе çӳретиччен яла хуса кĕрес терĕ тет. Хăваласа пынă чух пĕрре те тӳрĕ утмаç тет, ялан пĕр айăкĕнчен тепĕр айăккинелле пăрăнать тет.

Çавна кура ку çын тапратрĕ тет вĕтме вăкăра. Аптранă вăкăр выртрĕ тет, пĕрре йăваланчĕ тет. Йăваланса тăрсанах йытă пулчĕ тет, унтан кушак пулчĕ тет. Ку çынĕ, ӳсĕрскер, хĕнеме чарăнасси пулмарĕ, пĕрехмай вĕлерес пек хĕнет тет. Тухатмăш аптраса çитрĕ ĕнтĕ. Астуса илчĕ те улăм купи пулма. Чăн та улăм купи пулса тăчĕ тет. Ку çын шалт аптраса çитрĕ. Кĕсйине хыпашласа пăхрĕ тет те аса илчĕ улăма тивертсе яма. Улăм çуна пуçларĕ, ку çын тухатмăша вĕлеретĕп тесе хĕпĕрте пуçларĕ тет. Унччен те пулмарĕ, ку улăмран пĕр арăм пулса тăчĕ тет. Ку арăм хăйсен ялех пулнă. Çын шалт тĕлĕнсе вилнĕ пек пулса кайрĕ тет, кун пек япала ку таранччен курманскер.

### 1311

Ĕлĕк пĕр тохатмăш порăннă тет. Вăл миçе çолтине никам та пĕлмен, сăнне те никамах та корман тет. Çак тохатмăш çор çĕр варринче килĕнчен тохса ял тăрăх çӳренĕ. Хăй çор пайĕ хора, çор пайĕ шорă полнă. Ял поçне тохса нăмайччен кĕлтунă, тем сăмахĕсем каласа мăкăртатнă тет. Хăй хыççăн темĕскерсем пăрахса хăварнă тет.

Вăл темле чĕр чон та полма полтарнă иккен: кошак, йытă, хор тата ыт. те. Пĕр каçхине çамрăксем поçтарăннă çĕре хора-шорăллă кошак пынă. Пĕр ачи чолпа персе амантнă. Çакăн хыççăн карчăк виç контан вилнĕ.

### 1312

Тухатмăш — усал сывлăшпа пĕрлешнĕ çын. Унăн пĕтĕм вăйĕ çур çĕр тĕлĕнче тет. Вăл вăхăтра сана та тем туса тухатма пултарать теççĕ. Тухатланă чух çын-мĕн курасран тухатмăш кушак, йытă, сысна пулать тет. Тухатмăш питĕ нумай вĕрӳ-суру чĕлхи пĕлет тет.

### 1313

Пĕрре Мăкăльсем патĕнче çĕвĕçĕ Петĕр кĕрĕк çĕлесе ларап тесе калать тет. Мăкăль арăмĕ пăлтăрĕнче мăкăр-мăкăр турĕ те хачă витĕр вăльтăрт! тухса кушак пулса тăчĕ тесе калать тет. Хаччине çавăнтах хурса хăварчĕ тесе калать тет. Вара хаччине илсе хутăм та вăрттăн пăхса тăратăп тесе калать тет. Килсенех эх! мăйăлтатать тет. Сисмерĕм те çын пулса тăчĕ тесе калать тет. Хăйĕн кĕпи аркисем йĕп-йĕпе тесе калать тет. Ку вăл тĕрĕсех пулнă тет. Ăна пурте çавăн пек калаççĕ.

### 1314

Тухатмăша тĕттĕм каçхине урамра курсан нимĕн те калама юрамасть. Кайран çын вилме пултарать. Тухатмăш каçхине тĕрлĕ чĕр чун пулса тăма пултарать. Пĕррехинче çапла хĕрпе каччă тăнă тет. Вĕсене хирĕç пĕр кушак чупса анать тет. Каччă çак кушака «ксс-с» тесе йыхăрса илет. Каччи нумай пурăнайман, вилнĕ тет.

### 1315

Ĕлĕк çĕр çинче калтунсемпе тухатмăшсем нумай пулнă тет. Вара вĕсем Çĕнĕ çул умĕн ытларах çӳренĕ тет. Çавсене курма ача-пăчасем ятарласа çĕрле урама тухнă тет.

Пĕррехинче, тухатмăш каçĕ, ачасем тухатмăшсем çĕрле мĕн тунине сăнаса пăхасшăн пулнă. Ухса выртаççĕ тет вĕсем кĕлет тăррине, пăхса выртаççĕ тет. Хайхи вĕсем патне кĕлет тăррине кушак ухать тет. Вĕсем кушака яраç тытаç те, хӳрине касса юлаç тет. Тепĕр кунне ачасем патне пырать тет карчăк, вĕсенчен ыйтать тет: «Манăн çӳçе, тархасшăн, парса ярăр», — тет. Вара ялта кам калтун пулнине пĕлчĕç тет.

## 1316

Крещени каç эпир Анаккайсене* кайса лартăмăр. Çапла пит лайăх кăна чей ĕçсе ларатпăр. Сасартăк мăрьерен пĕр кушак килсе анчĕ. Малтан вăл сак çине сиксе анчĕ, кайран урайне. Ак тытăнтăмăр-çке çак кушака хĕнеме. Ку кушак ыр тихĕмлĕ мар тетпĕр хамăр. Антюк карчăкне пирĕн ялта тухатмăш тесе калатчĕç. Вăл пиртен икĕ килĕ сиктерсе пурăнать. Ирхине ку чăнах та Антюк пуль-ха тесе хайхине Мари карчăкпа кусем патне кайрăмăр. Леш карчăк пирĕн, каçран сывă çӳрекенскер, айлатса выртать парать. Эпир килсен пуçне те кăтартмарĕ. Вара пĕр эрне урама тухмарĕ. Эпир ăна юри сăнарăмăр. Антюк карчăк вара чăн-чăн тухатмăш. Пире крещени каç мĕн хăтланаççĕ-ха кусем тесе курма кушак пулса кĕнĕ те ĕнтĕ вăл.

## 1317

Пĕр çамрăк чăваш çимĕк каç хăйсен кил картишĕнче хура кушак курнă. Ку кушак унчченкурман кушак пулнă. Хай çамрăк кушака хăваласа яма тытăннă. Вăл патак илсе кушак хыççăн чупнă. Кушака хăваласа çитсен ăна патаккипе çапнă. Патакки кушак пуçĕнчен тивнĕ. Кушак йăваланнă кайнă та этем пулса тăнă. Хĕрарăм аллипе пуçне тытса: «Ах, ачам, ачам, пуçăма шăтартăн-çке эсĕ!» — тенĕ. Хура кушак ăна çапса амантнă çамрăк чăвашăн амăшех пулнă-мĕн.

Çапла ывăлĕ тухатмăш пулнă амăшне чут анчах вĕлереймен.

## 1318

Пирĕн ялта ĕлĕк калăм эрнинче шăмат кун каçхине пĕр çынсен алăкĕнче кушак макăрнă тет. Кил хуçи арçынĕ алăка уçса пăхрĕ тет те, кушак чупса кĕрсе кăмака айне чăмрĕ тет. Кушакĕ тикĕт пек хуп-хура тет. Арçынĕ хăйсен кушакки пуль тесе кĕртес тенĕ тет. Кил хуçи çак кушака тытать те пит вăйлă хĕнесе кăларса перет. Темиçе кун иртсен пускил карчăкки урамра курăнмасть тет. Çак çынсем карчăк патне кайса пăхаççĕ те, карчăк вырăн çинче ахлатса выртать тет. «Мĕн пулнă сана, кинемей?» — тесе ыйтаççĕ. «Чирлерĕм-ха», — тесе калать тет хайхи карчăк. Вара çынсем пĕлнĕ тет çак карчăк тухатмăш карчăкки пулнине.

## 1319

Пирĕн ялта пĕр ватă карчăк пурăнатчĕ, ăна Хĕрлĕ карчăкки тетчĕç. Çак хĕрлĕ карчăккинчен ял халăхĕ уйрăларах тăратчĕ, ăна юратсах каймастчĕç. Унăн пирки темĕнле сăмахсем те çӳретчĕç.

Пĕрре Федоров Санькка каçхине ĕçрен таврăннă тет, унăн çулĕ урлă хура кушак каçса кайнă тет. Санькка нимĕн шухăшлама та аптратнă тет. Хура кушак унăн ури айĕнче чупкалама тапратнă тет. Киле те çитнĕ тет, кушак çаплах ун ури айĕнче явкаланнă тет, темĕнле ача сассипе çухăра-çухăра илнĕ тет хушăран. Хайхи Санькка шухăшласа тăман тет, алăк çум-

* Анна аппасем патне.

ёнче тăракан кĕреçепе çак кушака пĕтĕм вăйран туртса çапнă тет. Кĕреçи кушаккине шăп çамкинчен лекнĕ тет.

Тепĕр кунне çак Хĕрлĕ карчăкăн пичĕ хуралса ларнă тет. Ял хушшине те тухма хăрать тет.

## 1320

Тухатмăш карчăксен уйăх вĕçĕнче тухатмалла тет. Унсăрăн вĕсен вăйĕ чакать тет те, вĕсем чирлесе каяççĕ тет.

Тухатмăшсем тĕрлĕ чĕр чунсем пек пулма пултараççĕ. Ку чăн пулнă япала. Пĕр ялта хĕрпе каччă çӳренĕ. Çĕрле вĕсем мĕн калаçнине тепĕр кунне пурте пĕлнĕ. Çавна хĕрпе каччă сыхлас тенĕ. Çĕрле калаçса утнă чухне, кусем теплерен çаврăнса пăхнă та хура кушака курах кайнă. Каччă кушака тытса хăлхине касса ярать. Тепĕр кун ирхине карчăк хăлхасăр пулнине пĕлнĕ.

## 1321

Калтун мăрьерен тухса кайнисем çинчен те калаççĕ. Хĕрарăм хачă урлă каçать пулать та йытта е кушака çаврăнать. Çапла пĕри амăшĕ йăтă пулса çаврăнса тухса кайнине пĕлет те амăшне тытать. Йăтта тытать та малти урисене пуртăпа касса татать. Курайман вăл амăшне çавăн пек çӳренĕшĕн. Амăшĕ найкăшса выртать тет алăсăр. Çавăнтан пĕлет амăшĕ калтун пулнине.

## 1322

Шурри 50 см çӳллĕш, 1 м вăрăмăш, 10 м хӳри, сăмси крокодилăнни пек.

Пахчана пĕр пек 12 хачă е 12 çĕçĕ илсе тухмалла. Шăп 12-ре лартса тухмалла. Вĕсем урлă сиксен сан умма Шурри тухать. Шуррине вĕлерекен хăй вилет тет. Хĕлле çак Шурри шурă çăмха пулать тет. Сăхсăхсан, хĕрес кăтартсан, «Хоспоти, аминь» тесе каласан çухалать тет. Автан авăтсан та çухалаççĕ тет шуррисем.

Пĕрре ачасем каçпа шурă йытта тытса юпа çумне çыхса хунă. Ирхине çав юпа çумĕнче карчăк йĕрсе ларать тет.

Кив Улхашра 4 çулта пĕрре кĕпер айĕнче туй пулать тет.

## 1323

Пĕррехинче, калăм каç, тухатмăш карчăкĕ йытă пулнă та урамра иртсе пыракан çынсем çине тапăннă. Патакпа темле хăваласан та çав йытăран хăтăлма пулман. Çамрăксем çав йытта вут пуççипе пуçĕнчен çапса пĕтернĕ. Тепĕр кунхине çав карчăк çамкине тутăрпа çыхса лартнă пулнă. Унăн çамки пиççе кайнă, çӳçĕ ĕннĕ. Вăл вара нумай вăхăт хушши урама тухмасăр пурăннă.

## 1324

Пĕррехинче çамрăксем тавлашса кайнă, масар çине кам кайса килме хăрамасть тесе. Пĕр Петĕр кайма килĕшнĕ. Çĕрĕ хуп-хура пулнă. Питĕ хăрушă. Пырать Петĕр, масар çине пăхать: хуп-хура йытă апат çисе ларать. Ку

йытта чулпа перет. Лешĕ тарма тытăнать. Ку ун хыçĕнчен тустарать. Яла килсе кĕреççĕ. Йытă ял вĕçĕнчи пĕр пĕчĕк пӳрте çатан урлă сиксе, кĕрсе хăвăрт çухалать. Петĕр çатан урлă каçнă çĕре пӳртĕнче çутă çутаççĕ. Пӳртне шаккать. Пĕр карчăк уçать, хăй хашкаса тăрать тет. Йытă ниçта та çук. Ку карчăк тухатмăш пулнă тет. Çапла, тухатмăшсем тĕрлĕ чĕр чун пулса çӳреме пултараççĕ тет. Нумайрах чухне кушак е йытă пулаççĕ тет.

## 1325

Пĕр хĕр кӳршĕ яла юлташĕ патне ларма кайнă тет. Килнĕ чухне ăна пĕр хура йытă хуса çитрĕ тет те унăн çулĕ çине тăчĕ тет. Хĕре ирттерсе ямасть тет. Хĕр умĕнче выртакан тăпра муклашкине илчĕ тет те йытăна печĕ тет. Куçĕнчен лекнĕ тет. Йытă вара тарчĕ тет. Тепĕр кунне ларма кайнин юлташ хĕрĕ кăн-кăвак куçпа тет. Çĕрле йытă пулаканни çав хĕр пулнă тет.

## 1326

Пĕр каç кукаçу Мăн Шĕвĕшрен улахран таврăнатăп тет. Çапла утса пынă çĕртех пĕр йытă чарăнса тăрать тет. Унтан çапла пыркаласа, утă купи пулса алăк патнех çитет тет. Çамрăк, вăйпитти пулнă çав. Пӳрте кĕме тăрать, çăраççи питĕрĕнчĕк, вара сарайне кĕрсе кайса автана кăçкăртать. Усал-тĕсел автаннин сассипе туххăмрах куçран çухалать.

## 1327

Пирĕн ялта тахçан пĕр карчăк пурăннă тет. Вара вăл карчăк тем те пулса тăма пултарнă тет. Ытларах вăл çур çĕр варринче хура йăтă пулнă. Анчах уна çынсем ĕненмен. Виç арçын çавна юриех сыхласа пăхма шутланă. Халь ку карчăк, чăнах та, çур çĕр варринче йăтă пулса тăнă тет. Кусем йăтта тытса хăлхине касса янă тет. Тепĕр кунхине карчăк патне кайса çилампах тутăрне салтса пăхнă тет те, кун чăнахах та, хăлхи татăк пулнă тет. Çан хыççăн карчăк йытă пулма пăрахнă тет.

## 1328

Эпир пĕчĕккĕ чухне пирĕн ялта Марек ятлă карчăк калăм кун, мăн-кун ĕнтĕ, йытă пулатчĕ. Çамрăксем вара çав йыттăн пуçĕнчи çăмне картса яратчĕç. Ирхине вара çав карчăкăн çӳçĕ çинче карт пурччĕ.

## 1329

Сахран арăмĕ мора кайма тохнă тет. Ăна хыçалтан юнашар порăнакан çын сыхласа пынă. Уйăх çути çап-çутă. Анкарти хыçне çитсен выртса йăваннă та йăтă полса тăнă тет Сахран арăмĕ. Çор çĕрччен çав йăтă таçта çохалса порăннă тет. Геннади ятлă çын ăна сăнасах пынă. Çор çĕр иртсен вара çав йăтă каялла çаврăнса килнĕ. Йăтă апмар хыçне çитсен йăванать те хĕрарăм полса тăрать. Геннадия корсан кĕпе вăлашки полнă та тăнă тет хайхи Сахран арăмĕ. Япала çумалли кĕвентепе çапнă-çапнă ăна Геннади, кĕпе валашки пĕр сăмах та чĕнмен.

### 1330

Калăм карчăк старикки сисиччен орине салтать те тăлипе поçне чăркать, хор полса çырмая вĕçсе каять, труба виттĕр тохса. Çырмая çитсен ки-как! ки-как! тесе кăшкăрать тит. Çынсем хăвалаç те, çырма хĕрринчи кĕпе валашки пулса выртать тит. Çакна тапса утсан та валашка анчах выртать, ним те тумалли çок.

Калăм карчăк çынсем кайсан хор полать те труба виттĕр кĕрет. Кĕрсен сорпан масмакне сырать те опăшки çомне кĕрсе выртать. Опăшки ăна сисмеç, калăма кайнине те пĕлмеç. Опăшкипе халь те лайăх порнаç тит.

### 1331

Тохатмăшсем, пăсăмçăсем кĕçĕн çимĕк каç кайăксем, йытăсем, сыснасем, кошаксем, вил торпассисем полса çăвасем çине пăсма каяççĕ тет. Çав кон апат çимесен, çăвая вил торпасне тимĕр карта çавăрсан: çав тохатмăшсене тытмалла теççĕ.

### 1332

Тухатмăш калăм каç, благовещени каç çӳрет теççĕ. Камăн тулта шурă кĕпи-йĕмĕ пулать, çавсене юнласа çӳрет е касса каять теççĕ. Тухатмăш — усал сывлăшпа пĕрлешнĕ çын, ăна сыхлаççĕ çынсем тытас тесе; вăл кушак е йытă пулса çӳрет теççĕ. Çав кушак пулнă тухатмăша тытсан вăл лаша пулса тапать тет, ĕне пулса сĕкет тет е вут пулса çунтарать тет.

### 1333

Тохатмăш пит нумай чĕлхе пĕлекен çын; вăл чĕлхипе темĕскер калаçать те, мăкăртатать те, хуне хăва корăнми полать: йытă полать, кашкăр полать, упа полать тата нумай тем те полать.

### 1334

Ĕлĕк-авал пирĕн ялта пĕр-пĕччен пурăнакан питĕ вată карчăк пулнă тет. Вăл çынпа та питех хутшăнса кайман тет. Çав карчăк тухатмăш пулнă тет. Вăл сысна е кушак пулма пултарнă тет. Пĕррехинче çав кушака çамрăксем ярса тытнă тет те питĕ хытă хĕненĕ тет. Хăрине касса илнĕ тет. Тепĕр кунне пăхаççĕ тет те, çав карчăкăн пичĕ-куçĕ кăвакарса, юнланса пĕтнĕ тет. Карчăк алли пулман тет. Вăл карчăк сысна пулса та çынсене хăратнă тет. Ун пӳрчĕ çумĕнчен иртсе çӳреме те хăранă тет çынсем. Çамрăксем хĕненĕ хыççăн вăл тухатмăш пулма пăрахнă тет.

### 1335

Кашни каç, çĕрле пулсан, урам тăрăх сысна нăриклетсе çӳренĕ тет. Сысни пысăк пулнă тет, хӳри пулман тет. Каччăсемпе хĕрсене уйрăмах хăратнă тет. Пĕррехинче Ванюкпа Надюк патне пырса тăчĕ тет те ниçта та каймасть тет. Ванюк хăраса тăмарĕ тет, кăна хĕнеме тытăнчĕ тет. Кусем тепĕр вырăна кайса тăчĕç тет, сысна унтах выртса юлчĕ тет.

Тепĕр кунне Макçăм арăмĕ Наçтуç вырăн çинче тăраймасăр выртать тет, çав кунах вилсе кайрĕ тет.

Сысна пулса тухаканĕ çавă пулнă тет.

## 1336

Пӳткелĕнчи пĕр хĕрарăм çапла тухатмăш пулнă. Унăн ачи пулнă. Юлташсем çак ачаран тăрăхланă: «Аннӳ сан тухатмăш», — тесе. Ку ачи тĕрĕслеме шутлать. Пĕррехинче амăшĕ, чăн та, картишне тухса çуртасем çутнă алăк кутне, ун урлă сиксе каçнă, вара тухатма тухса кайнă сысна пулса. Ку ачи каялла, киле кĕрес умĕн кун хăлхисене касать ярать. Сысна çĕрĕпех кăшкăрса выртрĕ тет. Тепĕр кунне амăшĕ кăмака çинче выртать тет. Ик хăлхинчен юн юхать тет. Ачи амăшĕ чăнах та тухатмăш иккенне пĕлет те пĕр ачана каласа амăшне машинпа таптаттарать. Ку шоферĕне вара тĕрмене хупса хучĕçĕ тет.

## 1337

Пĕрин арăмĕ тухатмăш пулнă тет. Анчах та çавна упăшки пĕлмен тет. Вара вăл кашни каç арăмне сыхлама пуçлать тет. Çур çĕр çитеспе арăмĕ шăпăрттăн тăчĕ тет те кĕрĕк чĕркесе упăшки çумне çын выртнă пек майласа хучĕ тет. Хăй чĕрес йăтрĕ тет те картишне тухрĕ тет. Картиш варрине чĕресне лартать тет. Хăй картиш йĕри-тавра çаврăнать тет те чĕрес умне пырса сысна пулса выртать тет.

Çакна сăнаса тăракан упăшки арăмĕ тухса кайсанах чĕресне пӳрте илсе кĕрет тет. Çутăласпа сысна каялла çаврăнса килет тет. Анчах ниепле те çын пулаймасть тет. Çын пулас тесен ун тухса кайнă чухнехи пек картиш йĕри-тавра çаврăнса чĕрес умне пырса тăмалла тет. Унсăрăн çын пулаймасть тет. Упăшки вара арăмне шеллесе чĕресне картишне тухса лартать тет. Арăмĕ çын пулса тăрсан вăл ăна питĕ хытă хĕнерĕ тет. Çакăн хыççăн вара арăмĕ нихăçан та тухатмăш пулман тет.

## 1338

Пĕррехинче пĕр каччă вăйăран таврăннă. Килне кĕрес умĕн ăна хирĕç икĕ сысна нăрăхлатса тăраççĕ. Хăйсем иккĕш те хуп-хура пулнă. Çынни кĕрес тет, анчах вĕсем ăна ямаççĕ, хăртлатаççĕ. Кайма пуçласанах çыртма тытăнаççĕ. Хайхи ку каччă тарăхса каять те пуçлать сыснасене тăпăлтарса хĕнеме. Сыснисем пур, хăнк та мар. Вара каччă тарма тытăнать. Сыснисем — ун хыççăн. Хăваласа çитеймеççĕ-и тесе ку чарăнса тăрать те — лешсем те чарăнса тăраççĕ. Çынни ку хайхи хăранипе килне анкартипе кĕрет. Лупас тăрне чикмек тăрăх улăхать. Пăхать те хайхи: сыснасем лупас тăрнех улăхаççĕ. Ку каччă пушшех хăраса ӳкет те кăшкăрса ярать. Ку кăшкăрнине илтсен, килтисем тухаççĕ. Тухаççĕ те пуçлаççĕ кил картине лекнĕ сыснасене хĕнеме. Лешсем аран-аран тарса ӳкеççĕ тет. Кусем тухатмăшсем пулнă.

## 1339

Тепĕр çын каçпала велосипедпа масар патĕнчен иртсе пырать тет. Тăрук, чипер пынă çĕртех велосипечĕ пăсăлчĕ ларчĕ тет. Шăп çав вăхăтра ун умне сысна тухрĕ тет. Асав шăлĕсене кăларса нăрăхлаттарса çывхарма пуçларĕ

тет. Ку çынни хăранипе питĕ хытă кăшкăрса ячĕ тет, велосипечĕ те юсавлах тет.

Ватă карчăксем, хĕрарăмсем тухатмăш пулма пултарнă е амăшĕ хăй виличчен хĕрне вĕрентсе хăварнă. Çавăнпа усалăн хăвачĕ таçта та çÿренĕ.

### 1340

Пĕр кĕтÿçĕ хăйсен ялĕнче тухатмăш пуррине пĕлнĕ. Вăл çав тухатмăша тытасшăн пулнă.

Çимĕк каçне вăл кĕтÿрен чи лайăх лашана тытнă та масар патне çул хĕррине кайса тăнă. Çур çĕр тĕлĕнче кĕтÿçĕ çулпа масар патнелле пĕр хура япала мĕкĕлтетсе пынине курнă. Анчах вăл мĕкĕлтетекен япала мĕн пулнине: йытă-и, кушак-и урăх чĕр чун-и пулнине — уççăн уйăрса илеймен. Çав кайăка курсан вăл лашин чĕлпĕрне карт туртнă та хăвалама тытăннă. Чупакан кайăк патне çывхарса çитсен вăл çав кайăка хăйĕн вăрăм пушшипе шартлаттарса тивретнĕ. Чупакан кайăк йăванса кайнă та арăм пулса тăнă. Арăм йăлăнса каланă: «Ан тивех, пăяхам! Эпĕ сана укçа тата кĕпелĕх пир парăп. Анчах эсĕ мана курни çинчен никама та ан кала», — тенĕ.

Çапла кĕтÿçĕ хăйсен ялĕнче кам тухатмăш пулнине тĕрĕссипех пĕлнĕ.

### 1341

Калтун тĕрлĕ япалана пулни çинчен пĕр чăваш ак мĕн каласа кăтартать. Эпĕ пĕрре çулла çимĕк тĕлĕнче ĕне шырама кайрăм, шырасан-шырасан каç пулчĕ. Хам масартан инçех мар, пĕр 50 хăлаç та пулас çук. Куратăп: пĕр хĕрлĕ ĕне çÿрет, ку ман ĕне пекех курăнчĕ, тытăнтăм эпĕ ĕнене хăвалама. Вăл хăваланă мая пымасть, урăх çĕрелле тарать. Манăн çилĕ килсе çитрĕ, çапрăм алăри патакпа ĕнене, ĕнен вĕчи тĕшĕрĕлчĕ анчĕ. Çавăнтах мана вăл: «Ах Турă, Кириле пичче, пĕтертĕн вĕт!» — терĕ. Çак сăмахсене илтсен манăн çÿç-пуç вирелле тăрса кайрĕ, хăранипе нимĕн тума та пĕлместĕп, часрах вара киле пăрахса таврăнтăм. Тепĕр кунне çав çын патне юриех кайрăм та, унăн хĕрĕ чăнахах вырăн çинче выртать. «Мĕн пулнă вара сирĕн хĕрпелен?» — тесе ыйтрăм эпĕ. «Кĕçĕр вăйăра ури сыппине сиктернĕ», — тет амăшĕ. Çавăнтан вара пĕлтĕм эпĕ вăл масар çине тухатмăш тума пынине. Çав хĕр ÿссе çитсен чăнах та питĕ усал тухатмăш пулса кайрĕ, унтан пурте хăратчĕç, ĕçкĕ-çикĕре ăна лашапа кăна илсе çÿретчĕç.

### 1342

Тухатмăш арçын пулнă тет. Пĕррехинче çавăн пек кашни каç ял тăрăх пысăк вăкăр чупать тет. Çамрăксене вăйăсенчен хăратса салатнă пирки икĕ каччă çавна сыхлама тытăнаççĕ. Çур çĕр çитсен çак вăкăр таçтан сиксе тухать те çутăлас умĕн çухалать. Хайхи икĕ каччă вăл вăкăр хыççăн каяççĕ, вăкăрĕ садри чăтлăха кĕрсе çухалать, унччен те пулмасть, çын пулса тухать, ялти çынах. Каччăсем чăтлăха кĕрсе тăвата çĕçĕ тупаççĕ, иккĕшне юриех пытарса хураççĕ. Ку ĕçе тухатмăш вăкăр пулса тухнă хыççăн тăваççĕ. Каялла килет вăкăр — çĕçĕсем çук пирки пуçĕпе урисем вăкăрăнах юлаççĕ. Вăл пÿрте кĕмесĕр, витере выртса пурăнма тытăнать.

Тухатмăш тăванĕсем çак икĕ каччăран тархасла-тархасла аран çĕççисене илеççĕ, вара тухатмăш урăх вăкăр пулмасть. Çапла ăна çынсем тата ытларах юратми пулаççĕ.

## 1343

Ĕлĕк пирĕн ялта Авдей арăмне тухатмăша çӳрет тетчĕç. Тухатмăшсем мелке утланса раштав праçникĕнче чупнă тет. Пĕррехинче Авдей пĕчĕк ачи макăрнипе вăранса каять. Пăхать вырăн çине — арăм çук. Тăрать те пӳртре ун-кун пăхкалать. Кăмака хыçĕнче таканапа шыв тăрать тет. Авдей тытать те çав шыва пуçтарса хурать. Арăмĕ çур çĕр иртсен килчĕ тет. Мăрье витĕр анчĕ тет те качака пулса тăчĕ тет. Кăмака хыçне кĕрсе кайрĕ тет. Пăхать: таканара шыв çук. Çав шывĕпе чӳхенмесĕр каялла нимпе те çын пулаймасть тет. Авдей шывне ярса пачĕ тет. Вара чӳхенчĕ тет те çын пулчĕ тет. Çавăн хыççăн вара Авдей тытса арăмĕн чĕлхине касса ячĕ тет.

## 1344

Тухатмăшсем чирлес пулсан çăмарта хуратса камсен те пулин лаша такани айне хураççĕ тет. Унсăрăн вĕсем чĕрĕлеймеççĕ тет. Тухатмăшсен чирĕ вара çав çăмарта пăрахнă кил-çурт çыннисем çине куçать тет. Вĕсен пĕрин хыççăн тепри ачисем чирлеме, вилме пуçлаççĕ тет. Çăмартине çĕмĕрсе пăхнă тет те, унта хуп-хура пуçлă хурт йăшăлтатса çӳрет тет.

Тухатмăшсем тĕрлĕ чĕр чун пулса тăма пултараççĕ тет.

Пĕр урамра пĕчĕк çеç путек мĕскĕн макăрса пырать тет. Пĕр карчăк пӳрчĕ умне пырса чарăнчĕ тет. Карчăк тухрĕ тет те:

— Ма халех килтĕн, ир-ха, — тесе калать тет. Путекки вара каялла çаврăнса кайрĕ тет.

## 1345

Пĕррехинче Костя, Валя тата эпĕ фермăна кайма тухрăмăр. Кĕпер урлă каçрăмăр та çыран хĕррипе утрăмăр. Пирĕн ума пĕр шурă хур тухса тăчĕ. Хăвалатпăр, вăл вырăнтан та хускалмасть. Тытрăмăр та ывăтрăмăр шыва. Утатпăр малалла, каллех çав хур тухса тăчĕ куç умне. Каллех шыва ывăтса ятăмăр. Утсан-утсан каллех çав хур пирĕн ума тухса тăчĕ. Костя вара: «Час ку хурăн мăйне касса яратăп», — терĕ. Çавна каланă хыççăн хур пирĕн ума тек тухмарĕ. Вара эпир малалла утрăмăр.

Ку тухатмăш пулнă иккен. Вăл каçпа хур пулать те шывра ярăнса çӳрет. Кайран, вун икĕ сехет çитсен, каллех çын пулса тăрать.

## 1346

Пирĕн ялта пĕр-пĕччен карчăк пурăнать. Вăл халь вата ĕнтĕ, чирленĕ. Пӳрчĕ те унăн хăй пекех «ватăлнă», ял вĕçĕнче тăлăххăн ларать.

Çак карчăк çинчен пирĕн ялта усал сăмах çӳрет. Ăна пирĕн тухатмăш теççĕ.

Ĕлĕкрех, çав карчăк çамрăк чухне-ха, каçпа урама хура кушак пулса тухнă пулать. Хура кушак вара вăл кăмака тавра виçĕ хут çаврăнса пулатчĕ тет. Пĕрре çапла тухса вăл пĕрисен вуттисене урам варрине сапаланă пулать. Пĕр сăмахпа каласан — çынсене усал туса çӳренĕ тет.

Вăл кушак кăна пулман тет, хĕрлĕ автан та пулатчĕ тет.

Пĕрре çапла пĕр арçын ĕçрен таврăннă тет. Ун чухне ĕнтĕ çĕрле тет, 12 сехет çитет тет. Килĕнчи пăлтăрĕ тĕттĕм пулнă. Пӳртне кĕнĕ чухне, сисмен вăхăтра, кун çине хĕрлĕ автан сиксе ларса сăхма тытăнчĕ тет. Çак çынни

ăна тытса çĕре пăрахрĕ тет те урипе тапрĕ тет. Автанĕ вĕçсе тухса кайрĕ тет.

Тепĕр кунне çав карчăк аллине çыхса янă тет, куçĕ те кăвак тет. Çапла (кушак е автан пулса) çӳресе, вăл хăйне килĕшмен çынсене тавăрма, усал тума тăрăшатчĕ тет.

## 1347

Пирĕн ялта Альтук аппана тухатмăш тетчĕç. Вăл хура курак пулса ялти клуба каçпа вĕçсе кĕнĕ тет. Тытса ĕлкĕреймен тет ăна, анчах вăл çунаттине амантнă тет. Ун хыççăн Альтук аппа ал ыратнипе чылайччен аптрарĕ тет.

Пирĕн урамри хутлăхран вăлах йытă пулса тухнă тет. Хĕрсем клубран таврăннă чухне пĕр хĕр çине икĕ ураллăн сикнĕ тет. Хĕрĕ хăрасах кайман та питĕ вăйлă тапнă тет. Ун хыççăнах хырăм ыратнипе аптăрать хай карчăк.

Çав карчăк пирĕн пата килкелесе ларатчĕ. Эпĕ вăл тухатмăш пулнине акă мĕнле пĕлтĕм. Альтук аппа тухса каяс умĕн алăк тăррине çĕнĕ пăта хутăм (тухатмăшсем тимĕртен хăраççĕ тенине илтнĕ эпĕ). Альтук аппа киле кайма тăрсан туртать алăка, алăк уçăлмасть. Асанне уçса пачĕ вара. Çак карчăк вăрçса тухса кайрĕ.

## 1348

Йăван амăшĕпе ĕне çитерме кайсан çапла тепĕр япала куртăмăр. Пăхатпăр ĕнтĕ иксĕмĕр те кӳлĕ пуçне кайса, çырмаран пĕр шап-шурă кĕпе тăхăннă, вăрăм кĕпе, ура тупанĕ таранах, пуçĕ хура ĕнтĕ, хĕрарăм хăпарать. Хăратпăр ĕнтĕ хамăр та, çӳçентерет. Ĕненсен те усала чун сисет пулмалла, пуçĕсене çĕклерĕç. Кайран хамăр та сисмен, пирĕн ĕнесем хамăр хапха умне çитсе тăнă.

## 1349

Ун чух калăм каçчĕ. Пиччесем патне кайнăччĕ те, çур çĕр çитеспеле хăпартăм. Пĕве пуçпе пынă чух темле майпа пĕве çинелле пăхса ятăм. Паçăр кăна вак кутĕнче валашка çукчĕ. Халь валашка ларать. Эпĕ вара шутласа илтĕм: ара, паян калăм каç-иç, кам та пулин валашка пулса выртнă пуль. Пĕр хулăмрах туя татăкĕ тытрăм та çав валашка патне утрăм. Хайхи тытăнтăм çак валашкана ислетме. Пĕре умĕнчен, пĕре хыçалтан парап. Çак Валашка аран-аран нăйкăшса илчĕ те сас пачĕ: «Ара, ан çап-ха хытă, вĕлерсе ан яр тата», — тесе çын сассипе каласа ячĕ. Тата хытăрах çапап. Карян ывăнтăм та каялла, киле килтĕм. Кам-ши ку валашка пулса выртнă теп.

Ир çинче шыв ăсма тухрăм та, Куçма пичче шыв ăсма тухнă, ытти чухне тухманнине. Эпĕ ыйтап: «Ара, ытти чухне ялан инке шыв ăсма тухатчĕ, паян мĕншĕн эсĕ тухнă вара?» «Ара, инкӳне тем пулнă, пичĕ-куçĕ кăн-кăвак, пилĕкĕ ыратать», — тет.

Вара эп хам ăшăмра култăм. Ĕнерхи валашка Куçма пиччен арăмĕ пулнă иккен.

## 1350

Пĕр арçын, Хĕветĕр ятлăскер, таçта кайнă пулнă тет. Килнĕ чух вăрман витĕр тухмалла пулнă тет. Ку вăрмантан тухрĕ тет те курать тет: пĕр çĕп-çĕнĕ, шап-шурă валашка выртать тет. Кантри те пур тет. «Мĕншĕн

28. Заказ № К-4231

вырттарас-ха çакăн пек лайăх япалана, илсе каяс», — тесе шухăшлать тет. Кантринчен тытса туртма пуçлать тет. Васкаса утать тет хăй. Утсан-утсан валашка хĕрарăм сассипе: «Ах, Хĕветĕр, — хытă ан турт-ха, çÿçе ыраттаран, çÿç тунине тăпăлтарса кăларан!» — тесе калать тет. Ку Хĕветĕр хăраса кайнă тет, хăранипе хытă туртса валашкин кантри вĕçĕ татăлса юлнă тет. Вара тепĕр кунне пĕлеççĕ тет, вăл хăйсен ялĕнчи пĕр хĕрарăм пулнă тет.

## 1351

Ĕлĕк калăм каç тухатмăшсем тĕрлĕ япаласем пулнă.

Пĕррехинче пĕр карчăк кĕпе кивмелли валашка пулса пĕве çине валашка вырăнне кайса выртнă. Ăна çамрăксем сиснĕ те çав валашкана питĕ хытă пăркăчласа лартнă. Вара карчăк кăшкăрса янă. Çав тухатмăш кайран хăйне хĕнекенсене тухатса вĕлерсе пĕтернĕ.

## 1352

Калăм каç икĕ çамрăк каччă юнашар ялтан таврăнаççĕ. Хайхисем ялне çитсен пăхаççĕ: урам варрипе анаталла пĕр урапа кусать.

Пĕри калать:

— Илсе каяс ку урапана киле.

Илет те ку урапана киле çитсен пачалăк* çине пăтаран çакса хурать. Хăй пÿрте кĕрет. Пÿрте кĕрсе ĕлкĕрет çеç, тулта такам çухăрни илтĕнет.

— Мĕн пулнă, кам çухăрать?

Чупса тухать кил хушшине. Пăхать: хайхи урапа вырăнне пачалăк çинче карчăк çакăнса тăрать. Тухатмăш калăм каç урапа пулса тухнă иккен.

## 1353

Пĕр килте пĕр карчăк питĕ хытă чирлесе ÿкнĕ тет. Нимпе те сывалаймасть тет. Упăшки каять тет юмăç патне. Ăна юмăç каласа ярать тет: «Киле çитсен хăйă çутса кăмака хыçне кĕрсе шырăр, мĕн тупатăр — çавна сĕтел ури çумне çыхса хурăр, ирхине тăрсан — куратăр», — тет. Упăшки киле çитсен хăйă çутса кăмака хыçне кĕрсе кайрĕ тет. Унта тутăхнă йĕпсĕр пуçне нимĕн те тупаймарĕ тет. Вара вăл çав йĕппе сĕтел ури çумне çыхса хучĕ тет. Ирхине тăраççĕ тет, арăмĕ самаях сывалнă тет. Сĕтел ури çумне пăхрĕç тет те, унта хăйсен ялĕнчиех, хăйсене паллаканниех карчăк тет.

Вара вĕсене кам тухатласа пурăннине пĕлчĕç тет.

## 1354

Пирĕн ялта, Хирти Выçли ялĕнче, Тимухха ятлă çын пурăннă тет. Çак çын калăм эрнинче кашни вут хутмассерен пĕрер пуленкине илсе юлнă тет. Калăм эрни юлашки кунĕнче вăл çак вутсене çур çĕрте хутса янă тет. Çак вăхăтра, çур çĕрте, таврари пĕтĕм тухатмăш хурама çине пухăннă тет каварлашма. Тимухха вут хутса ярсанах вĕсем унран вуттисене çунтарма чарма ыйтнă тет. Шăп çав вăхăтра Тимухха тухатмăшсене палласа юлнă тет.

---

* Пахча алăкĕ.

## 1355

Вăл тухатмăшсем çимĕк вăхăтĕнче пит алхасаççĕ тет, çимĕк каç вĕсем пурте масар çине пухăнаççĕ тет. Тухатмăшсен çимĕк каç пĕр-пĕр çĕре кайса çÿрес пулать тет. Унсăрăн усалсем каçхине пырса ăна вĕлереççĕ тет.

## 1356

Тухатмăшсен виличчен хăйсен ĕçне урăх çынна вĕрентсе хăвармалла тет. Унсăрăн вĕсем вилсе каяймаççĕ, асапланаççĕ тет.

Тухатмăша вĕренекенсен мăйĕнчен хĕресне хывса сурмалла тет. Ун çине таптамалла тет. Турра пĕрре те асăнмалла мар тет. Вĕсем пĕрле пухăнса кăмака çинче вир акса ÿстернĕ, пухса илсе пăтă пĕçерсе çиеççĕ тет. Вара пĕрмай вĕçен кайăк пулса пĕр масартан тепĕр масара çитеççĕ тет. Пĕрре: «Ах, турăçăм, тата миçе масара çитмелле-ши-ха?» — тесе шутласа илнĕ тет те çĕре персе аннă тет.

## 1357

Пĕр çын пĕр карчăк патне хваттере кĕнĕ тет. Çав кун тухатмăш кунĕ пулнă тет. Карчăкĕ вара чăнах та тухатмăш пулнă тет. Ку çывăрса кайсан карчăк патне татах та çынсем килчĕç тет. Вара вĕсем вĕри трупана çулласа мăрйинчен тухса кайрĕç тет. Хваттере кĕнĕ çын та çакна курчĕ тет те хăй те çавăн пек турĕ тет. Мăрьеререн аран упаленсе тухсан шăпăр çине утланса тухатмăшсем хыççăн чупрĕ тет. Кăна курсан тухатмăшсем çакна ярса илчĕç тет те пĕрле вĕçтерсе улăхса кайрĕç тет. Ку: «Воспоти, помилуй», — тесен пĕр çÿллĕ хурăн çине антарса лартрĕç тет.

## 1358

Тухатмăш ытларах хĕрарăм пулать тет. Арлă-арăмлисенчен те пулать тет. Арăмĕпе упăшки çывăрсан арăмĕ çур çĕр тĕлĕнче вăрттăн тăрать тет те упăшки çумне кĕвенте хурса хăварать тет ан вăрантăр тесе. Хăй юшка уçать тет те юшкаран тухса каять тет. Енчен кам та пулин сиссе юшкине хупса хурсан кĕреймест тет.

## 1359

Пĕрин упăшкин арăмне пурте тухатмăш тесе калаççĕ тет. Упăшки çакна тĕрĕслес тесе шухăшлать тет. Пĕтĕм тухатмăш ĕлĕк çулталăкра пĕрре тухатмăшсен ярмăрккине таçти аякри пĕр улăхра пуçтарăннă тет. Çав каçхине сăнама шут тытнă тет вăл. Каçхине çывăрма выртсан вăл вăрттăн пăхса выртать тет.

Ĕлĕк пурте çĕрте çывăрнă, пурин валли те пĕр вăрăм минтер пулнă. Арăмĕ шăппăн вырăн çинчен тăчĕ тет те минтере упăшки çумне тăсса хучĕ тет. Минтерĕ арăмĕ пулса выртрĕ тет. Хăй тăрса урай варринче ларакан çатма йĕри-тавра виççĕ çаврăнчĕ тет те кулюкка пулса тĕнĕрен тухса кайрĕ тет. Ун чухне хура пÿртсем пулнă, кăмака мăрйи пулман, ун вырăнне кăмака çумĕнче стена çинче шăтăк кăна касса кăларнă, çавна тĕнĕ тенĕ.

Хайхи упӑшки йӑпӑр-япӑр сиксе тӑрса тӑхӑнса ҫатма тавра виҫҫӗ ҫаврӑнчӗ тет те кулюкка пулса тухса кайрӗ тет ярмӑрккӑна.

Улӑхра нумай тухатмӑш пуҫтарӑннӑ тет. Ку килсе ҫитсен тухатмӑшсем этем шӑрши кӗрет тесе калаҫҫӗ тет. Арӑмӗ килсе ҫитсен упӑшкине курсан хӑраса ӳкет тет те калать тет: «Хӑвӑртрах тар кунтан, вӗсем сана ҫисе яраҫҫӗ вӗт, ме сана лаша, чуптар хӑвӑртрах, хыҫалалла ҫаврӑнса ан пӑх», — тесеکаларӗ тет, унтан ӑна шурӑ лаша пачӗ тет. Упӑшки лаша ҫине ухса ларса кайрӗ тет килнелле. Кайсан-кайсан, кусем мӗн тунине ҫаврӑнса пӑхас килчӗ тет. Ҫаврӑнса пӑхрӗ тет те, хай шурӑ туя ҫине утланнӑ, лара парать тет. Унтан туйине пӑрахса утрӗ тет килнелле. Ҫырмасем, пуссем, вӑрмансем урлӑ каҫса аран-аран, виҫ кунтан тин килне таврӑнчӗ тет.

## 1360

Вӑл тухатмӑшсене тытма та пултараҫҫӗ тет. Анчах пит мел кирлӗ тет. Ҫимӗк каҫ масар ҫине кутлӑхсӑр хӑмӑт, малти урапа тӗнӗлӗ, шӑхасӑр* ҫӗҫӗ илсе улӑхма кирлӗ тет. Унтан вара ҫав хӑмӑта тӑхӑнса, шӑхасӑр ҫӗҫӗ тӗнӗлӗн кӗнтӗк шӑтӑкне тӑхӑнтарса масарӑн йӗри-тавра ҫырса ҫавӑрӑнсан, тухатмӑшсем масар ҫине кӗреймеҫҫӗ тет, вара хӑйсем те куҫах курӑнаҫҫӗ тет. Пырса тытсан та тараймаҫҫӗ тет. Ӗлӗк, ҫирӗм пилӗк ҫул иртнӗтӗр ӗнтӗ, пирӗн ялсем Ҫимун Кӗркки ҫимӗк каҫ ҫапла туса тытнӑ тет виҫ ҫынна, икӗ арӑм, пӗр хӗр тет, вӑл вара вӗсенчен виҫшер тенкӗ укҫа, пӗрер тӑрӑх пир, пӗр четвӗрт эрех ӗҫнӗ тет.

## 1361

Вӑл тухатмӑшсем ҫимӗк вӑхӑтӗнче пит алхасаҫҫӗ тет, ҫимӗк каҫ вӗсем пурте масар ҫине пухӑнаҫҫӗ тет. Унта вӗсем пурте тӗнӗ витӗр тухса каяҫҫӗ тет. Уша юпи тӑррине пӗр курка шыв лартаҫҫӗ тет те мелке илсе утланаҫҫӗ тет, мелке утлансан вара ҫав шыва пырса ӗҫеҫҫӗ тет, ӑна ӗҫсенех тӗнӗрен вӗлт туса тухса каяҫҫӗ тет. Пӗрех минутра масар ҫине ҫитсе тӑрать тет вара, унта ҫапла пурте пухӑнаҫҫӗ тет, унта вара тӗрлӗ айкашаҫҫӗ тет, лашалла та кӗҫенеҫҫӗ, ӗнелле те мӗкӗреҫҫӗ, кушакла та макӑраҫҫӗ, автанла та авӑтаҫҫӗ тет, унта ҫапла ӗйелесен-ӗйелесен вара яла кӗреҫҫӗ тет, анчах хӑйсене кураймалла мар тет.

## 1362

Тухатмӑшсем калӑм ҫӗрӗнче 41 масара ҫитмелле тет. Вӗсем яла кӗреймеҫҫӗ тет. Ӑҫтан каҫса кайнӑ, ҫавӑнтан каялла кӗмелле тет вӗсен.

Пирӗн ялта вӗсене сыхласа та пӑхнӑ. Тухатмӑшсем шӑпӑр ҫине утланса кӗпер урлӑ каҫса сиккелесе-ҫаврӑнкаласа вӗҫсе кайрӗҫ тет.

Пирӗн яла кӗпер урлӑ каҫса кӗмелле. Кӗпер ҫине тилхепе карса хутӑмӑр таларатпӑр тет. Автансем авӑтма пуҫласан хайхи килчӗҫ тет вӗҫсе. Ниепле те кӗпер урлӑ каҫса каяймаҫҫӗ тет. Питӗ тархасласа ыйтаҫҫӗ тет хайхисем. Кӗртсе яма ыйтаҫҫӗ тет. Тепӗр кунхинех манӑн юлташӑн йӑмӑкӗ чирлесе ӳкрӗ. Вӑл курпунлӑ пулса тӑчӗ. Халӗ те ҫавӑн пекех пурӑнать, час-часах чирлекелет.

* Авӑр.

## 1363

Ĕлĕк Çĕнĕ çула хальхи январĕн 13-мĕшĕнче ирттернĕ ваттисем. Çак каçа хăратмалли каç тата тухатмăшсен каçĕ теççĕ. Тухатмăш пулса тĕрлĕ чир-чĕрсем ярса çӳренĕ çынсем. Пĕрре çапла пулнă имĕш. Çак каç пĕр çын тухатмăш пулса тăнă. Вăл хура кушак пулнă. Çав хăй кушак пулса тăнă вырăна çĕçĕ тăрăнтарса хăварса масар çине кайнă тет. Çакна пĕр çын курнă та çĕççине илнĕ. Кайран вара леш, тухатмăш, çур çĕр иртсен тин таврăнать тет те, çĕççи çук. Тухатмăш вăйĕ çав çĕçĕре пулнă. Ăна çухатсан вĕсем тухатма пултараймаççĕ тет, вĕсен пуçĕ те ыратать тет. Тухатмăшсем çĕçĕ е урăх япали камра иккенне пĕлсе тăраççĕ тет. Вара çав тухатмăш леш çынни патне пырса йăлăнать тет. Лешĕ панă тет. Уншăн тухатмăшĕ ăна япаласем панă, хăй тухатмăш иккенне калама хушман.

## 1364

Пĕр çул, 1865 çулта-ха вăл, çимĕк каç манăн атте вăрмантан шалçа тиесе таврăннă чух çырма хĕрринчи мунчара темĕн тĕслĕ сасă илтнĕ тет: лашалла та кĕçенеççĕ, ĕнелле те мĕкĕреççĕ, кушакла та макăраççĕ, йытăлла та вĕреççĕ, автанла та авăтаççĕ тет. Вăл вара çавсенчен хăраса сехри хăпса таврăнсан пĕр эрне чирлĕ выртнă тет.

## 1365

Тухатмăш та çав ăрăмçă манирлех. Тухатмăш япала çине сăмах каласа çитерсе вĕлерет çынна: вăл çăмарта çине тухатса пама пултарать, çу çине, мĕнле çимелли пур япала çине.

## 1366

Чăвашсем хушшинче тухатмăш нумай пулать, арçынтан та, хĕрарăмран та, вĕсем епле те пулин çынна тухатасшăн тăрăшаççĕ, вĕсем нумайăшне праçник вăхăтĕнче тухатаççĕ, хăшне чуптуса, хăшне сывлăшпа вĕрсе, хăшне сăра ĕçнĕ чух курка çине туса параççĕ, çав куркана астумасăр ĕçсен çынна ленкет вара. Ленксен çын ăшĕнче вара чул пек пулать, çав чул пекки ӳссе çитсен вара çын пит асапланса вилет. Пирĕн ялта пĕр хĕр çапла вилчĕ, вăл Лявук хĕрĕччĕ, ăна мăнкунра эрех черкки çине туса панă тет, вăл вара ĕçсе ярсанах ăша çĕçĕ пек çурса анса кайрĕ тет. Вăл хăй ăна, ĕçтерекеннине, ун чух çапах каламан, унтан вара пĕр уйăхранах аптра пуçланă, ăшпа пăвăна-пăвăна ӳксе. Хайхи вара ӳснĕрен ӳснĕ. Пĕрер çултан вара чунлă пек сиксе çӳре пуçланă ăшра. Вăл хĕр уйăхĕ-уйăхĕпе аптратчĕ, аптранă вăхăтра качака пек кăшкăрса выртатчĕ. Çапла асапланса тăват çултан вилчĕ вара. Хăшне тумтир çумне пит юн сĕрсе пăсаççĕ тет. Ун пек çынсенчен пит сыхланса çӳреме кирлĕ.

## 1367

Ĕлĕк-авал тухатмăш карчăксем пулнă тет. Вĕсен мĕнле те пулсан çынна усал тумалла пулнă, вĕсем çынна усал тумасăр пурăнаймаççĕ тет. Хăйсен тухатмăшла ĕçĕсене çамрăк хĕрсенчен кама та пулин вĕрентсе хăвармалла пулнă тет. Вĕрентсе хăвараймасан, вилсен вĕсене тамăкра ăшалантараççĕ тет.

## 1368

Ашшĕ-амăшĕ тухатмăш пулсан, пĕр-пĕр ачине вĕрентсе хăвармасан çӳлти патшалăха кĕмес теççĕ. Амăшсем ачисене вĕрентсе хăвармасан тухатмăшсем çĕр çинче пĕтнĕ те пулĕччĕç.

## 1369

Манран ватăраххисем каланă тăрăх, вăл кошак полса кĕнĕ полнă тит пĕрисем патне. Лешсем ăна ярса тытнă тит те лайăх хĕненĕ тит, кайран çорăмĕ çинчен касса илнĕ тит тирне. Тепĕр ик-виç контан çав кошак полса кĕнĕ тохатмăш карчăк вилнĕ тит. Çома никамах та кайман тит. Ку хĕнекенни йори çанта кайнă тит. Çак чăнахах та çав карчăк полнине пĕлнĕ тит. Çав карчăк хăйĕн хĕрне вĕрентсе хăварнă тит тохатмăш полма. Хĕрĕ кайран таварнă тит çав çынна. Вăл вĕсен выльăххисене вилсе пĕтмелле туса тохатланă тит. Халĕ те вĕсен выльăхĕ ăнмасть теççĕ.

## 1370

Пĕр вăхăтра ялта тохатмăшсем çинчен чылай калаçатчĕç. Вĕсем çĕрле тĕрлĕ чĕр чун: сысна, йытă, кушак е урăххи те пулса çӳреççĕ иккен. Çур çĕр тĕлĕнче масар çине кайса унта усал ĕç тума калаçса татăлаççĕ пулать.

Çак сăмах чăн е чăн маррине тĕрĕслесе пăхма шутларăмăр. Пĕр çĕр эпĕ, Çеркей кум, Мина шăллăм, Ваçук пуçана тухатмăшсене сыхлама масар çине кайса тăма калаçса татăлтăмăр. Кашниех сенĕксем илтĕмĕр, юплĕ пилеш туратти хатĕрлесе хутăмăр. Хамăр тухатмăш тытма каяссине никама та пĕлтерместпĕр-ха. Тухатмăш курсанах сенĕкпе чикетпĕр тетпĕр. Вара тепĕр кунне кама суран пулнине пĕлсе ялта кам тухатмăш пулса çӳренине пĕлетпĕр тетпĕр.

Çур çĕр çитеспе пурте алла «хĕç-пăшалсене» тытса масар çине тухса утрăмăр. Унта çитсен тăватсăмăр та масарăн тăвата кĕтесне кайса тăтăмăр. Сас кăлармасăр кам та пулин килессе кĕтсе тăратпăр. Масар çине пилеш юппи витĕр пăхса тăмалла тенипе ун витĕр пăхса тăратпăр. Унсăрăн тухатмăшсем куçа курăнмаççĕ иккен.

Çур çĕр çитеспе чăнах та темĕн чаштăртатнă сасăсем илтĕнчĕç. Унччен те пулмарĕ, ман пата Çерук кум чупса та çитрĕ.

— Мĕн пулчĕ? — ыйтап унран.

— Килчĕç вĕт, ура сасси илтрĕн-и? — тет.

— Илтрĕм-ха та, чуп часрах, хăвăн вырăнна кайса тăр, тытаймастпăр ак, — теп ăна. — Ан хăра, сан пата пырсанах пашлаттар сенĕкӳпе, пире пĕрех ним те пулмасть уншăн.

Çерук кум вара каллех хăйĕн вырăнне кайса тăчĕ. Тата илтĕнмест-и сасчĕв тесе кĕтсе тăтăмăр, ним те илтеймерĕмĕр. Вара киле кайма пуçтарăнтăмăр.

— Ахалех пулчĕ çӳрени, тытаймарăмăр никама та, — тесе калаçкаласа яла пырса кĕтĕмĕр. Унччен те пулмарĕ, пирĕн ума таçтан пĕр сысна сиксе тухрĕ. «Хăть мĕн пултăр, хăваласа çитсе тытатпăр, — тесе сыснана хăваламa пуçларăмăр. Сысна та эпир чупнине курса чупма пуçларĕ. Çитме инçе те юлманччĕ, пĕрисен хапхи айне кĕрех кайрĕ. Хуçисене шаккаса уçтартăмăр ĕнтĕ. Сысна кĕрсе кайнă килте пурăнакан карчăка шăпах тухатмăш тетчĕç.

Çапла тытаймарăмăр тухатмăшне те, сыснине те. Те ахаль кăна пулчĕ, те тухатмăшах.

## 1371

Тухатмăшсем çинчен каланине татах пĕлетĕп-ха. Çĕнĕ Ахпӳртре пулса иртнĕ ĕç çинчен каласа парам.

Ĕлĕк лаша кĕтĕвĕ çĕрле çӳреттĕмĕр. Çĕнĕ Ахпӳртре те çĕрле лаша кĕтĕвĕ тухнă ĕнтĕ. Çак кĕтĕве пĕррехинче шур качака пырса лашасене хăратса çӳрет тет. Кĕтӳçĕсем ку ахаль качака маррине, тухатмăш пулнине сисеççĕ. Вара качакана çавăрса илеççĕ те вăрăм пушăсемпе хĕнеме тытăнаççĕ. Хĕнесе вĕлеретпĕр теççĕ. Качака ниçта кайса кĕрейми тапăртатса тăрать тет. Унччен те пулмасть, качака этем чĕлхипе калаçса янă пулать вара: «Тархасшăн, ан вĕлерĕр, 30 пăт тырă паратăп», — тесе калать тет.

Çапла каласан кĕтӳçсем качакана яраççĕ. Чăнах та, тепĕр кунне кĕтӳ ачисем çак тухатмăшран 30-шар пăт тырă кайса илеççĕ, çапла вара çĕнĕ ахпӳртсем кам тухатмăш пулса çӳренине пĕлеççĕ. Унтанпа тухатмăш йăхне «шур качака» йăхĕ теççĕ.

## 1372

Ку ĕçсем Катек ялĕнче пулса иртнĕ. Яла туй килет. Ĕлĕк туй-çăнăхта* курма каймасăр никам та юлман, халь анчах çӳремеççĕ ĕнтĕ. Çак туя тухатмăш та пынă.

Туй курма пыракансене черккепе эрех ĕçтермелле кил хуçин. Ку тухатмăша памасăр хăварнă тет. Тухатмăшĕ вара çакăншăн çилленнĕ те килне кайнă. «Килех пырса ĕçетерет-ха мана», — тесе хăварчĕ тет.

Вăхăт çитсен туй халăхĕ килĕсене кайма пуçтарăнать. Лашасене кӳлсе тăратаççĕ, хапхана уçаççĕ, туй халăхĕ лавсем çине улăхса ларать. Анчах лашасем нимле те хапхаран тухмаççĕ тет. Хĕнеççĕ тет саламачĕсемпе, пурпĕр малалла каймаççĕ, хапха тĕлĕнче ик ура çине чĕвен тăраççĕ малалла иртмесĕр.

Кил хуçи вара аса илет: «Çав тухатмăш килменччĕ-и?» — тесе ыйтать çынсенчен. Çынсем: «Пурччĕ, килнĕччĕ вăл», — теççĕ. «Эп ăна эрех памасăр сиктерсе хăварнă апла, ку çавăн ĕçĕ, чупăр часрах ун патне», — тесе пĕр çамрăка эрех тыттарса тухатмăш патне чуптарать.

Тухатмăш ача эрех йăтса пынине курсан савăнса кулса ячĕ тет.

— Пыр, эс çитнĕ çĕре туй халăхĕ тухса каять, — тесе эрехне илсе юлать.

Чăнах та, ача çитнĕ çĕре туй халăхĕ ялтан тухса кайма та ĕлкĕрнĕ иккен. Мĕн тунă вăл? Пĕри те пĕлмеççĕ.

## 1373

Çак Катек тухатмăшĕ çинченех тепĕр халап çӳрет.

Пĕрре çак арçынсемпе тавлашса каять. Тухатма пултараймасть тесе пулмалла. Шăпах çулпа 5—6 лав пыраççĕ тет. Тухатмăш çакна курать те тавлашакансене: «Çавсене çапăçтарса ярас-и?» — тет. Хăй çапла калать те лавсем пыракан çул çине вăйлă тилмĕрсе пăхма тытăнать. Унччен те пулмасть, лавсем йĕркеллĕ пынă çĕртенех чарăнчĕç тет. Лавçисем пĕр çĕре пухăнса ним çукранах тытăçсах çапăçма пуçларĕç тет. Тухатмăш лавсем

---

* Çĕнĕ хăта.

ҫинелле пӑхма пӑрахрӗ тет те, лавҫисем ним пулман пекех лавӗсем ҫине ларса малалла кайрӗҫ тет. Ҫак тухатмӑш гипнотизер пулнӑ теҫҫӗ. Эпӗ те ҫапла шутлатӑп. Куҫ пӑвса вӑл тӗрлӗрен мыскарасем тунӑ пулӗ тетӗп.

1374

Пӗр ялта туй халӑхӗ хӗр леҫме килнӗ. Хӗрӗ пуян тавращӗ пулнӑ. Хӗр хыҫҫӑн ҫичӗ-сакӑр парпа килнӗ, лайӑх лашасемпе, шелесни, хут тӑрантассемпе килнӗ. Хӑйсем хӗрлӗ кӗпесемпе, шелеткӑсемпе, шароварсемпе, атӑсемпе пулнӑ, хӑшӗ сехетлисем те пулнӑ. Хӗрарӑмсем муллӑ хушпусемпе шӗнкӗлтеттерсе ларнӑ. Туй курма халӑх темӗн чул пуҫтарӑннӑ: сак тулли хӑна, пӳрт тулли халӑх пулнӑ. Сӗтел тулли ӗҫме-ҫиме ларнӑ. Сӑра-эрех шыв выранне юхнӑ кусен. Пӳртре сӑрнай ҫӗмӗрнӗ, тулта шӑнкӑрав янӑранӑ. Ташӑ сасси тӑрӑс-тӑрӑс туса анчах тӑнӑ. Туй халӑхӗ, кӗр халӑх, лара-тӑра пӗлмен: хӑшӗ юрланӑ, хӑшӗ ташланӑ, хӑшӗ авалхи юмахха ярса чунне савӑнтарнӑ.Сӑра куркисемпе черккесем алӑран алла анчах ҫӳренӗ. Туй халӑхӗ ҫапла куҫса ларнӑ чухне ҫав киле икӗ чӑваш пынӑ. Кӗсем ҫав ялта чиркӳ тӳрлетекен ӑстасем пулнӑ. Вӗсенчен пӗри хӗрӗхелле ҫитнӗ ҫын пулнӑ, тепӗри унран пӗр вунӑ ҫул аслӑ пулнӑ. Иккӗшӗ те шухӑ ҫынсем пулнӑ. Аслӑраххи ҫамрӑк чухне лаша вӑррине те нумай ҫӳренӗ, тӗрмере те икӗ тапхӑр ларнӑ. Янтӑ туя кайса курас тесе пынӑ ӗнтӗ вӗсем ҫав киле. Ку чиркӳ ӑстисене ялта пурте палланӑ. Ҫавӑнпа вӗсене пӳрте кӗрсен пӗр кана хӑна шутӗнчех лартнӑ, сӑри мар, эреххи те чылай леккеленӗ ҫаксене. Ларсан-ларсан тула тухнӑ кусем. Этем тулта та нумай пулнӑ. Кусем ыттисенчен ҫапах пӑртак пӑрӑнарах ҫӳренӗ. Иккӗшӗ хапха патнерех, йӑмра айне, пырса ларнӑ кусем. Туй шавланӑ, халӑх савӑннӑ, сӑрнай ӳхӗрнӗ, лашасем ҫинче шӑнкӑравсем янӑранӑ. Ларсан-ларсан ҫак икӗ чӑвашран пӗри, тӗрмере ларни, хӑй юлташне каланӑ: «Ҫак лашасене ура ҫыхам-и?» — тенӗ. «Епле?» — тенӗ лешӗ. «Ҫаплах, — тенӗ ку, — эпӗ ура ҫыхсан ҫак хапхаран пӗр лаша та тухас ҫук», — тенӗ. «Ан хӑтлан», — тенӗ кӑна юлташӗ. Хӑй ҫапах пит чарсах та кайман — ӗненмен пулмалла. Лешӗ каллех каланӑ: «Эсӗ лерелле пӑхса тӑр-ха пӑртак, кунталла ан пӑх, ман ура ҫыхасси пӗр самантра пулать», — тенӗ. Юлташӗ каланӑ: «Лерелле пӑхкаласа тӑриччен эпӗ луччӗ пӳрте кӗретӗп», — тенӗ те утнӑ пӳртелле. Ура ҫыхас текеннин кӗсйара ирӗлтермен упа ҫӑвӗ пулнӑ. Унӑн килӗнче икӗ ачи кукша пулнӑ. Упа ҫуне вӑл ҫавсен пуҫне сӗрме тесе хатӗрленӗ. Ку вара кӗсйинчен упа ҫу туртса кӑларнӑ та вӑрттӑнтарах пырса пысӑк хапха тӑпси айне пӗр мӑйӑр пек упа ҫу хунӑ, калинкке тӑпси айне тепӗр мӑйӑр пек хунӑ. Юлашкине вара лайӑх питӗрсе, шӑрӑш кӑлармалла мар туса кӗсйине чикнӗ. Вара юлташӗ патне, пӳрте кӗрсе ларнӑ. Чип-чипер ҫын пулса, хӑнасемпе пӗр шутах пулса ларнӑ вӑл. Юлташӗ шӑппӑнтарах ыйтнӑ кунтан: «Лашасене ура ҫыхрӑн-и?» — тенӗ. — «Ҫыхрӑм». — «Епле? Мӗнле майпа?» — «Тухсан курӑн», — тенӗ ку. Туй ӑна-кӑна пӗлмен, хӑй майӗпе шавланӑ анчах. Вӑхӑт ҫитсе килсен хӗр ҫум халӑхӗ киле кайма тапрана пуҫланӑ. Хуҫисем чараҫҫӗ кусене, хӑнисем ура ҫине тӑраҫҫех, сӑрнайӗ те ҫул кӗввине лӑрлаттарать кусен...

Вара ҫапла ҫул куркисем, ҫул черккисем ӗҫкелесен тарантассем ҫине тухса ларнӑ кусем. Хуҫисем тарантас ҫинче те ӗҫтернӗ кусене: пӗр касси юрланӑ, пӗр касси йӗнӗ кусем. Ҫӗнӗ ҫынни йӗре тӑркачӑ куҫӗсем тӑртанса кайнӑ пулин те, татах ҫапах пиччӗшӗпе инкӗш умне пырса тӑнӑ та куҫа

уçайми йĕнĕ. Хайхи йĕрсен, юрласан-тусан хапха уçса панă кусене. Малти лаши хапха патне çите пуçласанах палт çавăрăнса кайнă каялла. «Ара, мĕн пулчĕ?» — теççĕ кусем. Ун хыçĕнчен тепĕри пырать. Кунăн та лаши харт тăвать те шалт çавăрăнать каялла. Хĕрарăммисем хăраса кăçкăрашаççĕ, хăшĕ тăрантас çинчен сиксе тараççĕ. Виççĕмĕш лашине çавăтса пыраççĕ ĕнтĕ хапха патне. Хапха патне çитесси пĕр чалăш çурă юлсассăн ку та тап тăрать. Чăпăрккапа та çапаççĕ лашана, пуçĕнчен те çавăтаççĕ. Сикмест те лаша. Хăлхана тăратса хартлатса çеç тăрать. Вара пĕр паттăрĕ пынă та лашана çакăнса пек çавăта пуçланă. Лаша çапах та малалла пĕр шит те пыман: чĕвен тăрса, çавăтаканнипех хăрах енне сиксе ӳкнĕ. «Мĕн пулчĕ те мĕн пулчĕ?» — тет ĕнтĕ этем. Хăшĕ калаççĕ: «Ахаль мар ку, виле тытрĕ-и ĕнтĕ е тăшман çын ура çыхрĕ пулĕ», — теççĕ. Лешĕ, ура çыхаканни, ним мар çын пек ларать вăл пӳртре. Юлташĕ кĕрсе калать куна: «Асту, мĕн хăтланатăн, аманса пĕтĕç, кăларса яр», — тет. Тулта чисти ăнтан кайнă ĕнтĕ: пĕр лаша та хапха патне яхăнне те пымасть. Вара ура çыхаканни пӳртрен тухать те çын хушшине кĕрсе тăрать. «Этсемĕр, — тет ку, — ку япала ахальтен мар вара, эпĕ чылай куркаланă çын, пăртак вилнисене асăнса çăкăр пăрахмасăр пулмĕ ĕнтĕ, — тет. — Ĕлĕк эпĕ кун пек япала пĕрре курнăччĕ. Ун чухне вара хапхаран выльăх тухаймарĕ. Сарай айĕнчи хӳме сӳтсе аран тухса кайрĕç», — тесе тăрать тет. Çăкăр пăрахасси-мĕн пулмарĕ тет вара. Йĕкĕтсем, çамрăксем сарай айĕнчи пĕр тăрăх хӳмене алли-пыран тытса пĕр самантра сӳтсе пăрахрĕç тет. Хайхи тин хĕр çум халăхĕ хăмла пахчи урлă, паранкă пахчи урлă иштерсе тухса кайрĕ тет.

Ура çыхаканни те ытла мăшкăлланă: ытах сарай айĕнчи хӳмене сӳтмесен те, туй халăхне тухма вырăн пулнă ĕнтĕ. Анчах вăл вĕсене çапах хăмла пахчине ваттарса çӳретнĕ.

Ура çыхаканни туй курса таврăннă чух хăй юлташне калать: «Эпĕ сана пĕркун упа çу кăтартрăм-и?» — тет. «Кăтартрăн», — тет ку. Юлташĕ калать: «Çавăнпа çыхаççĕ ĕнтĕ лаша урине, — тет. — Акă пăх, хапха тăпсине пĕрер мăйăр пек анчах хутăм, пĕр лаша та тухаймарĕ. Ăçта та пулсан çулăн икĕ айккине пĕрер çăмах пек упа çу хурсан, çав çулпа вара лаша-выльăх иртес çук: е кутăн кай, е аякран пăрăнса кай», — тесе вĕрентрĕ ку хăй юлташне.

Эпĕ те калам тата: пире те çавăн пек вĕрентекен пулсан пит аван пулĕччĕ. Халĕ веç вĕрентмеççĕ те, пĕлместпĕр; пĕлместпĕр те тĕттĕмре пурăнатпăр — ура çыхнисемпех аташса çӳретпĕр.

Çак ĕç Çĕрпӳ уесĕнче, Урмар станцинчен çывăх ялта пулнă. Çичĕ-сакăр çул ĕлĕк пулнă.

## 1375

Тата çав Раман старикех калать. Ĕлĕк питĕ ăста вĕрӳçĕсем пулнă иккен, пĕри Хрулка, тепри Петрушка старик, вĕсем иккĕш те ватă çынсем пулнă. Ку Раман старик çамрăк чухне, вот иккĕшĕ тавлашма пуçларĕçĕ тет хайхи вĕрӳçĕсем, иккĕшĕ те ӳсĕр пулнă. Хрулки калать тет лешне: «Микиш пуянăн туй килет Эре хĕрринчен. Çавăн туйне чарайăн-и? — тет, — эпĕ чарăп», — тет. Ну, туй килнине сыхласа тăраççĕ тет. Килсе тухрĕ тет туй. Пĕр çухрăм юлсан: туя хирĕç каркаланчĕ тет, хăлаçкаланчĕ тет аллипе, вĕркелесе ячĕ тет. Хай туй чарăнчĕ тăчĕ тет чăнахах. «Вăт, куратăр-и: туй чарăнчĕ», — тесе каларĕ тет. Кайрĕç тет туя хирĕç. Кĕрӳ

каччин лаши йăваланса тăрать тет, ниçта та кайса кĕреймест тет. Çавăнтан вара ялтан вĕрӳçĕсем илсе килчĕç тет. Вĕрӳçĕсем эмеллеççĕ, никак чĕртейменççĕ тет. «Çук, капла пулмарĕ ĕнтĕ»,— тесе каларĕç тет. Леш çынсем хай Хрулка пиччене илсе килес терĕç тет, пыраççĕ кун патне: «Вот çапла, çапла, кĕрӳ каччин лаши чирлерĕ, темĕскер пулчĕ, йăваланать, ниçта кайса кĕреймест», — тесе каларĕç тет. Хайхискер вĕрӳçе йăлăна пуçларĕç, эрехсем ĕçтере пуçларĕç тет. Ӳсĕртсе çитерсен каларĕ тет вара: «Кусăр, хасăр чĕрĕлĕ»*, — тесе каларĕ тет. Темĕскер каллех тухрĕ те карăнкаларĕ, вĕркелерĕ тет, çавăнтах кĕрӳ каччин лаши чĕрĕлнĕ, тĕм хура лаша, самăр, пĕтĕм кăпăка ӳкнĕ тет. Туй кăнтăрларан килсе чарăннăскерсем Энтри апатĕнче тин яла кĕчĕç тет. Çавăнтан вара Петрушка вĕрӳçĕ: «Эпĕ санах çитереймеп, сана хирĕç килеймеп», — тесе каларĕ тет. Вара урăх тавлашмарĕç тет. Çинчен тата бутылка эрех ĕçтерчĕ тет Хрулкана. Халĕ çавăн пек вĕрӳçĕсем çук ĕнтĕ. Халĕ те калаçкалаççĕ туй тăвакан шăпăра пăснине.

## 1376

Тухатмăша Турă тамăк хуранĕ пушă ларасран пултарнă теççĕ. Турă иртсе пынă чухне: «Вăй патăр», — тенĕ тухатмăша. Кайран тухатмăша пĕлнĕ те, ним тума та пулман, вара каланă: «Тамăк хуранĕ пушă ларасран пултăр ĕнтĕ», — тенĕ.

Юмăç пирĕн ялта виççĕ пур. Юмăç усă кӳрет теççĕ. Çимĕк каç тухатмăшсем çынсене пăсма, тухатмăш тума çăва çине каяççĕ тет. Вĕсем тем тума та пултараççĕ тет: йытă та пулаççĕ тет. Вĕсене çын курмасть тет. Тухатмăша курас тесен çимĕк сăрине, икерчине те çиес пулмасть — вара курать тет; укçа çуннине те курать тет. Тухатмăшсем иккĕн пăсаççĕ тет: тĕрлĕрен выльăхсене-кайăксене: «Çавна илетни?» — тесе тăрать тет пĕри, тепри: «Илместĕп», — тесе тăрать тет; «Хура пулла илетни?» — тесен тепри: «Илеп», — тесен — хура пулăпа пăсни пулать тет: вара хура пулăпа чӳк тумасăр та сывалмалла мар тет. Çăханпа пăссан çăханпа чӳк тумасăр сывалмасть тет.

## 1377

Этеме пăсакан та пур. Ĕлĕк Мăнçырмара пĕр Пармак ятлă шăпăрçă пурччĕ. Унсăр пуçне туй, пумилкке ирттерейменччĕ. Пит ăрăмçă пулнă. Çиллентерсен çул çинче чипер чуптарса пыракан туй халăхĕн лашисенех шăп ниçта та хускалайми туса, урисене çыхса хуратчĕ тет. Вара лашисем çак шăпăрçă Пармак хушмасăр ни каялла, ни малалла тапранаймастчĕç тет.

Çав шăпăрçă Пармаках пĕрре, Шăхалле туя кайсан, пĕр çамрăк маткана пăснă. Матки халь ватăлнă, карчăк пулнă. Пĕр вырăнтан тепĕр вырăна ниепле те ярт утса сиксе каяймасть. Аллине-урине, пуçне-куçне чĕтретет, текех пĕр вырăнта çăлкаланса тăрать. Пармак шăпăр каланă чухне çав арăм (ун чухне вăл çамрăк, чипер, илемлĕ çын пулнă) Пармак умне сиксе тăнă та: «Шăпăрне калас тăк лайăхрах кала, эп ташласа тăраниччен ан чарăн», — тесе каларĕ тет. Пармак: «Юрĕ, кунĕпех ташла», — тесе каларĕ тет. Пармак çапла каласанах арăм вырăнтан пĕр япала та сикеймерĕ тет, тек пĕр вырăнта çăлкаланса сиккелесе тăракан пулчĕ тет. Пармак çиллине салтса хăварман, çавăнпа ĕнтĕ çав карчăк паян кунччен те асапланать пулать.

* Чупăр, халех чĕрĕлĕ.

## 1378

Пирĕн ялта ĕлĕк, эпĕ астăвассăмра, пĕр тухатмăш карчăк пурăнатчĕ. Вăл вилни те ĕнтĕ пĕр пилĕк-ултă çул пуль. Çав тухатмăш пирĕн ялсене пĕтĕмпе хăратса пĕтернĕччĕ. Çынна кăшт çилленсенех вăл пĕр-пĕр çимĕç çине темĕскер кĕлли вуласа çитеретчĕ тет. Ялти çынсем пурте: унăн тĕсĕ те темĕскерле хăрушă тетчĕç. Ăна куриччен малтан эпĕ ун çинчен çапла калаçнине ĕненместĕм; кайран эпĕ ăна вăл виличчен ик-виç уйăх малтан куртăм та, тата çитменнине вăл тухатмăша вĕренни çинчен илтрĕм те, ĕненме мар, унăн темĕскерле хăрушă сăнĕ халь те асăмра тăрать.

Кĕркунне пĕрре, кĕрхи сăрара, пирĕн пата ăратнесемпе пĕрле çак тухатмăш карчăк та пырса ларнă. Эпĕ ăна малтан, ун сăнĕ те темĕскерле хăрушă тенĕрен, паллаймарăм. Унăн тĕсĕ хăраман çынна хăрушă та мар иккен: ахаль ват çын тĕсĕнчен пĕртте уйрăм мар. Хăй çынсене вăл пĕрре хăратса пĕтернĕ те, ун умне те курăнма хăранăран, унăн тĕсĕ те хăрушă пек курăннă курнать. Кайран та эпĕ ăна, аннерен ыйтса пĕлмен пулсан тата хăй тухатмăш туса этемсене усал тунисемпе мухтанса ларнине илтмен пулсан, паллаймасăрах юлнă пулăттăм. Ĕçекен çынсене пурне те палласа ăна анчах паллайманран тата пуринчен те лайăхрах тумланнăран, аннерен ыйтса вăл хăй пирĕн ялсене чĕтреттерсе анчах пурăннă тухатмăш иккенне пĕлтĕм те вăл калаçнине итлеме сентре çине улăхса лартăм. Вăл малтан тухатмăш пулса çынсене тарăхтарса пурăннипе мухтанса ларчĕ. Унтан вара пирĕн патăмăрта ĕçекен çынсем пурте: Савнихер акка, епле тухатма вĕрентĕн, кала та кала тесе йăлăнтарчĕç те, вара хăй тухатмăша вĕренни çинчен каласа кăтартма тытăнчĕ: «Эпĕ ĕлĕк, хĕр чухне, пĕр юмăçран юмăça вĕренни çинчен илтнĕччĕ. Анчах хĕр чухне нимĕн те кирлĕ мар: эп ун чухне пĕр-ик эрне астуса çӳрерĕм те, хай маннă кайнă каллех. Качча кайсан пĕр вун пилĕк çул иртсен, Кĕремченке каç, хай ĕлĕк пĕр юмăç юмăça вĕренмелли çинчен каласа кăтартни шухăша килчĕ кĕчĕ. Юмăça вĕренме те çав юмăç вĕрентнĕ тăрăх, çав Кĕремченке каç вĕренмеллеччĕ. Çавăн çинчен шухăш килсе кĕрсенех манăн та тепле юмăça вĕренесси килчĕ. Вара хама хам каларăм: мĕн пулсан та пулать, эп те юмăç каланă тăрăх туса пăхам-ха; вĕренсен вĕренĕп, вĕренмесен вĕренмĕп; вĕренсен те пăсмĕ; ĕмĕрĕм нимĕне вĕренмесĕрех иртĕ: усалшăн та кун иртет, ырăшăн та иртет терĕм те, çĕрле пулса çитсенех пӳртри турăша илсе арман пăрĕ çине кайрăм. Варри тĕлне кăна çитсен хам тавра тимĕр карта çавăртăм та турăша ӳпĕнтерсе ун çине лартăм. Турăша ӳпĕнтерсе турăш çинче нумай та ларса тăраймарăм, пуçа çĕклесе пăхап та — хам патăма чут çитмен — йĕри-тавра темĕн чухлĕ кашкăр пекскерсем килеççĕ. Эпĕ çавăрнă карта патне çитрĕç те пурте таçта кайса кĕчĕç. Вĕсем куçран çухалсанах тата ман патăма йĕри-тавра темĕн пек хăрушă вут çунса пыра пуçларĕ. Вăл та ман тимĕр карта тĕлне çитсенех лап сӳнсе ларчĕ. Çак икĕ япала куçран çухалсанах, темĕскер курса тăрăп тесе, киле кайма ура çине тăрсаттăм ĕнтĕ, унччен те пулмарĕ, хыçалалла çаврăнса пăхатăп та, хам патăмрах пĕр темĕскерле пăхма çук хăрушă упа пекскер тăра парать. Куçĕсенче хăйĕн кăмакари пек вут çунать. Ăна курсанах эпĕ хăраса кайса ӳкрĕм. Вара вăл ман патăма пычĕ те алăран тытса тăратрĕ, вара хăй ман çăвартан ăша вĕрчĕ те таçта кайса кĕчĕ.

Унтан вара эпĕ, юмăç вĕрентнĕ тăрăх, тата турăш илтĕм те хамăр хыçри мунчана кайрăм. Унта та, пăр çинчи пекех, турăша урайне

ӳпĕнтертĕм те хам ун ҫине лартăм. Унччен те пулмарĕ, мунча сасартăках ҫап-ҫутă ҫуталса кайрĕ. Лапка айне пăхатăп та — темĕскерлескер тухать: ҫын — ҫын мар, выльăх — выльăх мар: пуҫĕ анчăкăнах пек, ури-алли, ӳчĕ-кĕлетки — ҫыннăн. Тухрĕ те ман ума пырса та ларчĕ. Эпĕ халь, те арман пăрĕ ҫинче те нумай япала курнăран, темĕскер пит хăрамарăм. Вăл манран мĕншĕн килнине пĕтĕмпе ыйтса тĕпчерĕ. Пĕр хăрамасăрах эпĕ ăна пĕтĕмпе каласа кăтартрăм. Кăшт тăрсассăн тата лапка айĕнчен тепĕр ҫын пекскер тухрĕ те хăйĕн кĕнеки ҫине ман кĕлеткене ӳкерсе илме тытăнчĕ. Тĕсе ӳкерсе пĕтерсенех иккĕшĕ те пĕрер ман ҫăвартан вĕрчĕҫ те ҫавăнтах таҫта кайса кĕчĕҫ. Вĕсем куҫран ҫухалсанах вара эпĕ тăтăм та таврăнтăм. Ҫавăнтан вара эпĕ чăнах та тухатмăш пулса кайрăм», — терĕ тухатмăш. Юлашкинчен вара тухатмăш: «Хăҫан та хăҫан эпĕ Турра пуҫҫапма шухăш тăвас пулсан е пуҫҫапасах пулсан вĕсем мана вĕлереҫҫĕ», — терĕ те, пирĕн патăмăрти ҫынсем пурте, вĕсемпе пĕрле ку тухатмăш та, шăкăрах ура ҫине тăчĕҫ те тухса кайрĕҫ пирĕн патăмăртан.

Пирĕн патăмăртан кайсан пĕр-ик уйăх иртейрĕ-и, иртеймерĕ-и, пирĕн ялта хай тухатмăш вилчĕ те терĕҫ. Пирĕн ял пысăк та ахаль те. Ялта пĕр-пĕр чаплă мар ҫын вилсен хăшĕ-хăшĕ ик-виҫ эрнесĕр те пĕлмеҫҫĕ. Хăшĕ-хăшĕ тата ик-виҫ уйăхсăр та ҫук. Ку тухатмăш хĕвел аннă вăхăтра вилчĕ те, ҫĕрле пулса ҫитиччен ун вилли ҫинчен пĕтĕм ял пĕлсе ҫитрĕ. Пирĕн ăспа ĕнтĕ усал вилмелле те пĕтмелле; апла пулсан ун ятне те ялта часрах маннă пулĕччĕҫ, тата хăйĕн ӳчĕ те тĕк выртнă пулатчĕ. Усал вилсессĕн те-ха ҫынсене часах кантармарĕ. Вăл епле вилнĕ, вилсессĕн мĕн-мĕн пулнă, пурне те пĕлместĕп эпĕ. Кунта ак ун ҫинчен пĕтĕм яла сарăлнă, пĕтĕм таврари яла сарăлнă ĕҫсем ҫинчен анчах ҫыртăм.

Вăл вилнĕ каҫ унăн ывăлĕ ялта пулман тет: пирĕн ялтан инҫе мар пĕр ялта пит чаплă пасар пур, ҫав пасара кайнăччĕ тет. Киле унăн арăмĕпе сакăр ҫулхи хĕрĕ анчах юлнă тет. Усалтан вилли патне пыма хăраса-и ĕнтĕ, ĕлĕк ҫиллентернĕрен-и кунăн вилли патне ни ăратнисем, ни кӳршисем пымаҫҫĕ тет. Мĕн тума пăхан вĕт: вилле пăрахса кӳрше кайса ҫывăрай-мастăн вĕт. Хăраса та пулин ун ҫинче иккĕшех ҫĕр каҫнă тет.

Ҫур ҫĕр ҫитсессĕн хай тухатмăш тупăкĕнчен сиксе тăчĕ тет те, пĕр аллине ҫĕҫĕ, тепĕр аллине витре илчĕ тет те кинне: «Атя луччĕ, атту ҫĕҫĕпе ҫавăнтах вакласа тăкатăп», — терĕ тет. Ахаль те хăраса анчах тăраканскер, кинĕ мĕн тĕрлĕ хăранă пуль? Шухăшлама та ҫук. Ҫапах та ҫав этемĕн ви-лесси килмест, темĕн чухлĕ хăранă пулин те ун хыҫĕнчен тухса кайнă тет.

Чăн малтан вăл ăна хăйсене хирĕҫсем патне ертсе кайрĕ тет, хапхине уҫрĕ тет, пăлтăр алăкне уҫаймарĕ тет нимĕнпе те. Унтан вара ăна хирĕҫĕ-сем патне ертсе кайрĕ тет. Кăсем патĕнче те хапхине, пăлтăрне уҫса хучĕ тет, пӳрт алăкне уҫаймарĕ тет. Унта та, хирĕҫсем патĕнче те вăл алăксене уҫнă та пулĕччĕ пурне те, анчах вăл уҫайман алăксене пурне те хĕрес хурса хупланăччĕ тет. Унтан вара ăна вăл хăйсен ҫумĕнчисем патне ертсе кайрĕ тет. Кăсенĕн хапхисене-алăкĕсене пурне те хĕрес хурса питĕрмен курăнать: пычĕ тет те пур алăкне те уҫса пӳртнех кĕчĕ тет. Пӳртне кĕрсен вăл тӳрех тĕпелте ҫывăракан кинĕ патне пычĕ тет те мăйĕнчен шăтарса пĕр витре юн юхтарса илчĕ тет. «Ку, — тесе калать тет, — ҫиллентернĕ ҫĕр пурччĕ: эпĕ ăна хам вилмен пулсан та туш* пĕтернĕ пулăттăм; халь ĕнтĕ вăл пĕр-ик эрне чирлесе выртĕ те вилсе кайĕ», — терĕ тет. Унтан

* Пурпĕр.

вара тӳрех килне ертсе кайрĕ тет. Хапхинчен кĕрсенех автанĕ авăтрĕ ячĕ тет. Çаврăнса пăхать тет кин, тухатмăш таçта тет. Пӳртне кĕрет тет те кинĕ, хай тухатмăш тавну* тупăкра тет.

Пытарчĕç тет ĕнтĕ. Тухатмăша пытарсан ик-виçĕ кунтан çак тухатмăш ăратнинчен пĕр çын кӳршĕри яла кайнă тет. Таврăнать тет ĕнтĕ. Хай кунăн çак тухатмăша пытарнă çĕререхрен иртсе каймаллаччĕ тет. Масар тĕлне çитсен хай тухатмăш шăтăкран пĕр ăричак йăтса тухрĕ тет те, çапать тет те старике аякках кайса тăрать тет, çапать тет те кайса тăрать тет. Çапла çапа-çапа ăна чут вĕлермерĕ тет. Ялтан халĕ те инçе пулман. Вăл ăраспуй кăшкăрнине ялта илтнĕ, чупса пырса аран хăтарчĕç тет старике. Старик яла пырсан хăйпе мĕн пулнине старостасене пурне те каласа кăтартнă. Хăйĕн (тухатмăшĕн) тăван ывăлĕ те старостасене темиçе хутчен те элек панă: çемйисене вăл хăрата-хăрата ăнтан янă тет, каçхине çур çĕр тĕлĕнче кăна пыратчĕ тет те ел алăкĕсене пырса шакăртаттаратчĕ тет. Ел тата тĕппи виттĕр: «Эсир ман çине хам хушса хăварнă пăрува пусманшăн çуртăра вĕлтĕрен пустарăп», — тесе кăшкăратчĕ тет. Халăхсем вара темĕн кăтартса тăрĕ тесе, хăй вилсен виçĕ эрнерен пĕр çĕре пуçтарăнчĕç те масар çине кайрĕç. Унтан вара ăна çĕнĕрен алтса кăларса кăкăрĕнчен юман шалча çапса хучĕç. Çавăнтан вара тин вăл тухса хăратса çӳреме пăрахрĕ.

Хай тухатмăш хăй вилнĕ каç пĕр арăмĕн мăйĕнчен çĕççипе шăтарса пĕр витре юн тултарса илнĕччĕ-ха. Çав арăм чăнах та çав каçах чирленĕ те пĕр-ик эрнерен вилчĕ те.

## 1379

Пирĕн ялта ĕлĕкех пĕр Ӳтемĕш ятлă тухатмăшсен пуçлăхĕ пулнă тет. Вăл хăйĕн тутлă çиесси килсенех, пĕр-пĕр çынна хăй тухатса парса, хăех вĕрсе-сурса тӳрлететчĕ тет те, ăна вара çавăншăн пит ĕçтерсе çитеретчĕç тет, ĕçкĕре-çикĕре те лашапа анчах çӳреетчĕç тет. Туй-çуй тавраш тăвас пулсан хĕрпе кĕрĕвĕпе пăсасран хăраса ăна ниепле туйран та хăвармастчĕç тет.

Пĕрре çапла пĕр туйран хĕр илме темиçе ял урлă каймалла пулнă тет. Çав çул çинче пĕр ялта усал тухатмăш пурăннă тет. Вăл тухатса парса хамăн ял витĕр вăтăр туя хама парне парса пуççапса йăлăнмасăр ирттермерĕм тесе мухтанатчĕ тет. Çак туя Ӳтемĕш вăйăçă пулса кайнă тет. Вăл çав карчăк çапла калаçнине илтнĕ тет те ял патне çитерехпе кӳме тăрне улăхса ларса тапăртатса шăпăр каласа пынă тет. Хайхи тухатмăш туй сассине илтсессĕнех ку туя та тухатса парса хама йăлăнмасăр ял витĕр ирттерес мар тесе чӳречине уçса чӳрече витĕр пăхса выртать тет. Ӳтемĕш ăна сиссе хăйне хирĕç тухатса панă тет. Хайхи тухатмăш туй иртсе кайсан та ни малалла иртеймесĕр, ни тулалла тухаймасăр чӳрече витĕр виçĕ кунччен пăхса выртнă тет. Виç кунтан вара хай тухатмăш ывăлне Ӳтемĕше йăлăнма янă тет. Ӳтемĕш, вăл çынсене питĕ нумай асаплантарнăран, хăй те асапланарах патăр-ха тесе часах тӳрлетмен тет. Тухатмăш ывăлĕ ӳксе пуççапса çĕр тенкĕ пама пулсан шеллесе ахалех тӳрлетнĕ тет. Ӳтемĕш ахаль пулсан пин тенкĕ парсан та тӳрлетес çукчĕ тет, ывăлне шеллесе анчах тӳрлетнĕ тет.

---

* Тахçанах.

## 1380

Чăвашсем пĕлĕмçĕ çынсем пулаççĕ теççĕ. Пĕлĕмçĕсем темĕн те пĕлеççĕ, темĕн те тума пултараççĕ тет. Вĕсене çапса-чиксе, пăшалпа та персе вĕлермелле мар тет. Пĕлĕмçĕсене пăшалпа йĕс тӳмепе (кĕрĕк тӳми) авăрласа персен анчах тивертме пулать тет. Пĕлĕмçĕсене вуйнара та пулĕ тимест тет, вĕсем хирĕç вĕççе пыракан пулĕсене аркăпа анчах тытаççĕ тет.

## 1381

Пăсăмçă вăл çав тухатмăш манирлех, çавăн пекех пăсать. Пăсăмçă вăл тыръ-пулă пăсма пултарать, çемйисене çапăçмалла тума пултарать. Вăл тата çынна пăсма ак çапла пултарать, масар çинчен çын вилсен шăтăкран кăларса пăрахнине илсе килет те çавăнпа вара вăл çын вырăнĕ çине сапса пăсма пултарать. Унтан вара татах выльăх-чĕрлĕхе пăсма пултарать. Чăвашсем çав пăсăмçăран питĕ хăраççĕ, ăна хирĕç пулсан чĕнмесĕр иртмеççĕ.

# VIII. АХĂРСАМАН

*Авалхи халапсенче тĕнчери пысăк пăтăрмахсем, арканусем, пăтравсем, ахăрсамансем палăрса юлнă. «Ахăрсаман» сăмах хăй тĕнче пĕтнине, этемпе чĕрĕ чунсене пурăнма май çук вăхăт капланса килнине пĕлтерет.*

*Çĕр сирпĕнни, чĕтрени, ишĕлни, путни, шыв илни тата тĕнче тытăмĕ арканни çинчен калакан хайлаллă халапсем тĕнчери ахăрсаман сăлтавне этемлĕх çылăхĕсенчен тасалма тивĕçлипе çыхăнтараççĕ.*

## Талай

*(Çĕре шыв илни)*

*Тĕнчене шыв илни тата чĕрĕ чунсене упраса хăварни çинчен калакан халапсем тĕрлĕ халăхсен пур. Авалхи Грецире Девкалион, шумерсемпе аккадсен Вут Напишта çĕр çинчи чĕрĕлĕхе упраса хăварнă. Чăваш халапĕсенче талай чухне Тартан паттăр карап тунине асăнни тĕл пулать. Ытти халапсем пурте Нойпа ывăлĕсем тата Шуйттан кимĕ çине ларса хăтăлни çинчен калаççĕ. Иудаизмран христианствăна куçнă Библи халапĕсем халăхра чиркӳ вĕрентĕвĕ урлă сарăлнă. Çапах та чи авалхи вăхăтран килекен хайлалăх та упранса юлнă. Çав шута çип карса хăтăлни, шыв тĕпĕнчен тепĕр хут хăйăр кăларни çинчен каланисем кĕреççĕ.*

### 1382

Ĕлĕк-авал пĕрре çĕр çинчи халăх пĕтнĕ тет. Ун чухне шупа (шывпа) пĕтнĕ пулнă. Çĕре шыв илнĕçемĕн илсе пынă. Çынсем çӳлерех те çӳлерех хăпарнă. Пӳртсене те шыв илме пуçласан мачча çине, пӳрт тăррисене хăпара-хăпара тарнă тет. Шыв вара çаплипех хăпарнă. Çав-çавах вилмелле тесе çынсем мачча çинче туй туни те пулнă тет. Çапла пĕтнĕ тет тĕнче пĕрремĕш хут. Çапах та çынсем çĕнĕрен хунаса кайма пултарнă, çынсен йышĕ чылайланнă.

Мĕнле пулса кайнă-ха çак? Турă пур çынна та пĕтермелле туман иккен ун чухне. Пĕр çынна унăн çемйипе кимĕ тума хушнă, апат-çимĕç илме каланă, лешсем вара çăлăнса юлнă. Çакăнтан çынсем чылайланнă. Турă çылăхлисене çапла пĕтернĕ çĕр çинче.

Тĕнче тепре пĕтес пулсан вутпа пĕтĕ теççĕ.

## 1383

Арамат тăвĕ çинче пĕр çемье пурăннă. Çĕрле арçын тĕлĕк курать. Тĕлĕкре вăл Турăпа калаçать. Турă ăна тĕнче шывпа пĕтесси çинчен пĕлтерет. Çемьене, пурлăха, халь çĕр çинче пурăнакан чĕрчунсемпе кайăккĕшĕке пухса, кимĕ туса тултарма, çав кимĕпе ту çине çӳлелле хăпарма хушать.

Арçын Турă каланă пек тăвать. Тĕнче шывпа тулса ларать. Ку çемье Арамат тăвĕ çинче ларса юлать. Пурăнсан-пурăнсан арçын курака çĕр тухни çинчен пĕлме ярать, анчах вăл таврăнмасть. Унтан çăхана ярать — вăл та таврăнмасть.

Юлашкинчен арçын кăвакарчăна вĕçтерсе ярать. Кĕçех кăвакарчăн таврăнать. Вăл çапла пĕлтерет, шыв типет, чакать, анма юрать. Çакăншăн кăвакарчăна Турă илемлетсе ярать, пĕсехине хĕрлĕ, кăвак, симĕс тăвать.

Ту çинчен аннă чухне шыв урлă çип çинче каçмалла пулнă. Кам каçса каять, вăл сывах, тĕрĕс-тĕкелех юлать. Кам каçаймасть, вăл çурри çын, çурри пулă пулса юлнă. Вĕсем халĕ те пурăнаççĕ.

## 1384

Ĕлĕк халăх хонаса кайса çылăха кĕнĕ. Он чохне çынсам çăвара кленчепе шу сыпса çӳренĕ. Çавăнпа çынсене шупа пĕтермелле тунă.

Ĕлĕк пĕр Ной ятлă çынна Торă тĕлĕкре çапла каланă: «Карап ту, атту шупа пĕтетĕр», — тенĕ тет. Лешĕ тонă тет. Часах шу толма поçланă тет. Çынсам пӳрт тăррине, йывăç тăррине хăпарса тарнă тет. Шу толсах кайнă тет. Çак Ной çемйи анчах йолнă. Вĕсен карапĕ çинче темле чĕрчон та полнă. Вăл пĕр кайăкне кăларса янă та, леш каялла таврăннă. Тепрехинче ярсан кайăк таврăнман. Вара шу типесси çакăнтан паллă полнă.

Вара çĕр çинче çак Ной çемйинчен халăх хонаса кайнă тет.

## 1385

Турă çĕр çине шыв тулас умĕн пĕр таса çынна карап тума кăларнă. Çак таса çын пĕрмаях темскер кая-кая ĕçленĕ, вăл арăмне те каламан. Шуйттан унăн арăмĕнчен пĕрмаях ыйтнă: «Сан упăшку мĕн тăвать вăл?» — тенĕ. Вара арăмĕ упăшкинчен темиçе ыйтса аран пĕлнĕ. Çав таса çын каланă: «Турă çĕр çине шыв тултарать, çавăнпа вилĕмрен çăлăнса юлмашкăн карап тăватăп», — тенĕ. Тепре Шуйттана курсассăн хайхи таса çын арăмĕ каласа кăтартнă. «Карап тăвать вăл», — тенĕ. Унтан Шуйттан каланă ăна: «Эсĕ çĕр çине шыв тула пуçласан, лар чачас*, шуйттан, темесĕр ан лар», — тенĕ.

Таса çын карап туса пĕтерсен, çĕр çине шыв тулма тапратсан, пур кирлĕ япаласене карап çине кĕртсе пĕтерсен çавăн арăмĕ çаплах ларман карап çине. Çĕр çине пилĕк таран шыв иле пуçланă, вăл çапах ларман. Вара юлашкинчен ним калама аптраса таса çын арăмне каланă: «Лар чачас, шуйттан, — тенĕ те, тин кĕрсе ларнă, унпа пĕрле Шуйттан та карап çине кĕрсе вилĕмрен çăлăнса юлнă теççĕ. Çавăн чух карап çине кĕмен пулсан Шуйттан халĕ те пулас çук теççĕ.

* Часрах, хăвăртрах.

## 1386

Ӗлӗк ҫӗр ҫине шыв тулнӑ чухне Ной ятлӑ ҫын виҫӗ пысӑк кимӗ тунӑ. Ҫынсем Нойран ку мӗн тумалли тесе ыйтнӑ, анчах вӑл вӗсене ним те каламан. Ҫӗр ҫине шыв туласси виҫӗ кун юлсассӑн, Ной ҫав карап мӗн тума кирли ҫинчен арӑмне каласа кӑтартнӑ. Шуйттан пӗрре Ной карап тунӑ ҫӗртен иртсе пынӑ. Шуйттан Ной арӑмӗнчен: «Санӑн упӑшку Ной мӗн тӑвать?» — тесе ыйтнӑ. Ной арӑмӗ Шуйттана Ной мӗн тунине тӗпӗ-йӗрӗпех каласа кӑтартнӑ. Шуйттан ҫавна илтсен, Ной арӑмне: «Эсӗ кимӗ ҫине упӑшку «шуйттан кӗр» тесе каламасӑр ан кӗр», — тесе каларӗ тет. Ной арӑмӗ чӑнах та упӑшки «шуйттан кӗр» тесе каласан тин кӗчӗ тет. Ҫапла вара Шуйттан Ной арӑмӗпе пӗрле кимӗ ҫине ларнӑ тет. Шуйттан кимӗ ҫинче пынӑ чухне киммине шӑтарнӑ тет те кимӗ пута пуҫланӑ тет. Хурӑн пуҫлӑ ҫӗлен Шуйттан шӑтарнине илтсен хӑвӑртрах васкаса хӳрине шӑтӑка пырса чикнӗ те, шыв кимӗ ӑшне кӗме чарӑннӑ.

Ҫавӑнпа хурӑн пуҫлӑ ҫӗлене вӗлерме сылӑх тесе шутлаҫҫӗ.

## 1387

Ӗлӗк тӗнче шывпа пӗтнӗ. 40 кун ҫумӑр ҫунӑ. Ноя Турӑ ҫумӑр ҫӑвас умӗн: «40 кун ҫумӑр ҫӑвать, тӗнче пӗтет, — тенӗ. — Эсӗ кимӗ ту та мӗн пур чӗр чуна пӗрер мӑшӑр ил», — тенӗ. Ной кимӗ тума пуҫланӑ.

Нойӑн арӑмне Усал ернӗ пулнӑ, вара Усалӗ ӑна: «Упӑшку мӗн тӑвать, ыйтса пӗл», — тенӗ. Арӑмӗ Усала ҫапла каланӑ: «Ыйтрӑм — каламасть», — тенӗ.

Вара Усал арӑмне вӗрентнӗ: «Хӑмла шыв вӗретсе ӗҫтер те калать», — тенӗ. Арӑмӗ вара ҫапла тунӑ. Вара Ной арӑмне ҫапла каланӑ: «Тӗнче пӗтет, — тенӗ. — Ҫавӑнпа пӑрахут тӑватӑп», — тенӗ. Усал арӑмне вӗрентет: «Айта, шуйттан, лар тесе каламасӑр ан лар», — тет. Упӑшки ачисене пӗрле лартнӑ. Унӑн виҫӗ ывӑл пулнӑ. Пӗрер мӑшӑр чӗр чунсем тиенӗ, апат-ырлӑхсем тиенӗ, анчах та арӑмӗ ларман.

Вара Ной: «Лар, шуйттан», — тесе кӑшкӑрать.

Хайхи хай Шуйттан та ларнӑ. Каяҫҫӗ. Кайсан-кайсан кимме Шуйттан шӑтарать, кимӗ путма пуҫлать. Хурӑн пуҫлӑ ҫӗлен шӑтӑкне пуҫне чикет. Кимӗ пӗр утрав ҫине ларать. Шыв пӗтнине пӗлме пӗр ҫӑханне кӑларса ярать. Ҫӑхан аш татки йӑтса пырать. Шыв пӗтет.

Ҫав утрав ҫинче иҫӗм ҫырли ӗрчетме тапратаҫ. Пӗринче ашшӗ хӑй ҫиттине витӗнмесӗр ҫывӑрнипе аслӑ ывӑлӗ кӗрсе кулса тухать. Вӑталӑххи кутӑн кӗрсе витсе тухать. Кӗҫӗннийӗ утсах кӗрсе хитре витет.

Ной аслӑ ывӑлне ҫапла калать: «Тӗнче тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳре», — тет. Вӑталӑххине калать: «Пуртӑ йӑтса ҫемйӳне тӑрантар», — тет. Кӗҫӗн ывӑлне калать: «Тӗпленсе ҫемйӳсемпе пӗрле пурӑн», — тет.

## 1388

Турӑ Ноя хушнӑ: «Ҫӗр ҫине шыв пуссан, этем кӑкӗ юлтӑр тесен пысӑк лодка* ту. Ҫак лодкӑна пурте вырнаҫмалла пултӑр», — тенӗ.

Ной пысӑк лодка тӑвать. Ҫак лодка ҫине ҫӗр ҫинчи мӗнле чӗр чун пур, вӗҫен кайӑксене пурне те лартса тултарать Ной. Нойӑн арӑмӗпе Шуйттан

* Кимӗ.

туслă пулнă. Ной çакна пĕлмен. Шуйттан Ной арăмне калать: «Эсĕ хăвна «лар, шуйттан» тесе каламасăр кĕрсе ан лар».

Чăнах та Ной пурне те лартса тултарнă лодка çине, арăмĕ çеç лармасăр юлнă. Халь Ной арăмне «лар» тесе темиçе те калать, леш лармасть. Ной çилленсе каять те: «Юл, лармастăн пулсан», — тет. Арăмĕ каллех нимĕн те чĕнмест. Халь Ной çилленсех каять те: «Лар, шуйттан!» — тесе кăшкăрса пăрахать. Хайхи арăмĕ хыпаланса кĕрсе ларать. Шуйттанĕ те арăмĕнчен юлмасть.

Упăшки лар, шуйттан, темен пулсан Шуйттан шыва путатчĕ, текех пулмастчĕ тет çĕр çинче.

Хĕрарăмпа туслă пулса Шуйттан хăтăлса юлать. Лодка тип çĕр шыраса шывпа ишсе çӳрет. Ной пĕр кăвакарчăн кăларса ярать тип çĕр шырама. Кăвакарчăнĕ каялла таврăнмасть, кĕтсе илеймеççĕ.

Тепĕр кăвакарчăн кăларса ярать. Ку та каялла килмест. Кĕтсе илеймесĕр вăл тепĕр кăвакарчăн ярать. Вăл каялла таврăнать, кăчăк туратти илсе килет. Вара Ной шутлать, инçех мар типĕ вырăн пур тесе. Çапла вара лодка малалла каять. Вĕсем Арарат тăвĕ çине тухаççĕ. Лодка çинчен пурте тип çĕр çине анаççĕ. Шуйттан та тип çĕр çине тухать. Çапла хĕрарăмпа туслă пулса Шуйттан çĕр çине тăрса юлать.

### 1389

Ной çинчен çапла калаççĕ. Ной кашнăй кун ĕçлеме пуртă-пăчкă илсе каять тет. Арăмĕ ыйтать тет: «Кăçта каятăн вара эсĕ?» — тесе. Ной каламаç тет. Пĕр 3 уйăх ĕçлеме кайнă, арăмне каламан. Вăл хăй ким тума кайнă пулнă. Хай çумăр çума пуçларĕ тет. Нойăн виçĕ ывăлĕ тата виçĕ кинĕ пулнă тет. Пурте пĕрле каяççĕ ким çине ларма. Таса кайăксене 7 мăшăр, тискер кайăка пĕрер мăшăр анчах кӳртнĕ тет ким çине. Виçĕ ывăл, виçĕ кин кĕреççĕ тет ким çине, Ной арăмĕ ниепле те кĕмест тет. Шыв тула пуçларĕ тет çĕр çине, ура сыппи таран пулчĕ тет. Чĕркуççи таран пулчĕ тет шыв. «Кĕр, кĕр», — тет Ной арăмне, кĕмеç тет унăн арăмĕ. Унăн арăмĕн йĕм тĕпне усал кĕрсе ларнă тет. «Кĕр, шуйттан, темесĕр ан кĕр эсĕ», — тесе каланă тет Усалĕ Ной арăмне. Хай шыв хул ай таран та пулчĕ тет, çапах кĕмеç тет Ной арăмĕ. Çăварĕ патне çите пуçларĕ тет. Хай Ной: «Кĕр, шуйттан, вилетĕн вĕт», — тесе кăçкăрса ячĕ тет те, тин кĕчĕ тет Ной арăмĕ. Хай Шуйттанĕ те кĕрсе ларчĕ тет. Ной калать: «Эсĕ ма кĕтĕн кимĕ çине?» — тет. Усалĕ калать: «Кĕр, Шуйттан, тесе кăçкăртăн вит, çавăнпа кĕтĕм», — терĕ тет. Ну вара Шуйттанне хăвса кăлараймаи вăл Ной.

Вара пĕр чарăнмасăр 40 талăк çумăр çурĕ тет. Тем тĕрлĕ сăртсем тăрне те шыв илнĕ тет вара, тата, çитменнине, шырши* килсе кимĕ тĕпне çисе шăтарнă тет. Ку, Ной, аптра тăрать, Çĕлене калать: «Хӳрӳне чик çав шăтăка», — тет. Çĕленĕ калать: «Чикессе чикĕп те, хам юратнă япалана парăн-и вара çĕр çине тухсан», — тет. Хай Ной аптăранăскер: «Парăп», — тесе каларĕ тет. Вара Çĕленĕ хӳрине чиксе тăчĕ тет, шыва кĕртмерĕ тет. Вара вĕсем пит нумайччен çӳренĕ шыв çинче. Шыв чака пуçласан кăвакарчăн кăларса янă, вăл каялла килмен, тата тепре кăларса янă, вара вăл хăва çулçи хыпса пынă çăварне. Вара Ной хĕпĕртенĕ, йывăç тăрри тухнăха ĕнтĕ тенĕ. Тепре çинче çăхана кăларса янă, çăхан вара пуçпех килмен

* Шăши.

каялла. Вара тӑрсан-тӑрсан шыв чакса ҫитнӗ те, мӗнпур кайӑксене кӑларса янӑ. Кайран вара хӑйсем тухнӑ ким ҫинчен. Хай Ҫӗлен Нойран ыйта пуҫларӗ тет: «Эсӗ хам юратнине парӑп терӗн, пар ӗнтӗ халӗ», — тесе каларӗ тет. «Ну мӗн кирлӗ вара сана?» — тесе ыйтрӗ тет Ҫӗленрен. Ҫӗленӗ каларӗ тет: «Мӗн юнӗ тутлӑ, ҫавна пар мана», — терӗ тет. «Пӑвана ярӑпӑр юн тутанса ҫӳреме», — терӗ тет Ной. Хай пӑван каять, тӗслӗрен япала юнне тутанса ҫӳрет. Килет те: «Мӗн юнӗ тутлӑ?» — тет Ной пӑвана. Пӑван каламаллаччӗ тет: «Этем юнне ним те ҫитмест», — тесе. Унччен те пулмарӗ, чӗкеҫ пычӗ те пӑван чӗлхине татса та илчӗ тет. Ну хай Ной ыйтать пӑвантан, пӑванӗ пӑн-пӑн-пӑн туса ҫеҫ тӑрать тет. «Мӗн тесе калать вӑл?» — тесе ыйтать тет ҫӗленӗ. Нойӗ калать: «Шыршипе шапа какайне ҫитес япала пӗртте ҫуккӑ тесе калать вӑл пӑван», — терӗ тет. Хай ҫӗлен ҫилӗпе чӗкеҫ ҫине сикет те чӗкеҫне хӑйне хыпайман, хӳрине 4 тӗкне татса илчӗ тет. Вара чӗкеҫӗн хӳри ҫавӑнпа икӗ юплӗ. Халӗ ҫӗлен шыршипе шапана анчах ҫиет.

## 1390

Нойпа арӑмӗ пурӑннӑ тит. Кашни кон карап тунӑ, анчах арӑмӗ вӑл мӗн ӗҫленине пӗлмен тит. Арӑмӗ ыйтать-ыйтать контан мӗн ӗҫленине, Нойӗ каламаҫ. Пӗрре Ной ӗҫленӗ чохне арӑмӗ патне пӗр ҫамрӑк каччӑ пырать. Вӑл унтан упӑшки мӗн ӗҫленине ыйтать. Арӑмӗ калать: «Каламаҫ вӑл мана», — тит. Каччӑ ыйтса пӗлмех хушать. Тепӗр конне опять пырать тит. Вӑл каччӑ Шуйттан пулнӑ тит. «Ну, калар-и?» — «Каламаҫ», — тит арӑмӗ. Вара Шуйттан ӑна сӑра вӗретме вӗрентсе хӑварать. Ной ӗҫрен таврӑнсан, арӑмӗ онтан мӗн тунине сӑра ӗҫтерсе ыйтса пӗлет. Ной калать: «Скорӑ потоп пулать, эп ҫавӑнпа карап тӑватӑп», — тит. Вӑл карап ҫине тӗрлӗрен тӗслӗ курӑк вӑррисем, пӗрер мӑшӑр кайӑк илмеллине калать. Арӑмӗ тепӗр кунне хайхи каччӑна Ной мӗн ӗҫленине каласа парать. Шуйттан вара хӗрарӑма калать: «Упӑшку лар, шуйттан, темесӗр ан лар», — тит.

Ҫӑмӑр ҫума тапратать. Хӗрӗх кун хушши ҫӑмӑр ҫуса тӑрать, ҫӗр шӳсех каять. Нойпа арӑмӗ Арарат тӑвӗ ҫине кайма хатӗрленсе ҫитеҫҫӗ. Ной арӑмне: «Лар!» — тит. Лешӗ: «Лар, шуйттан», — темесӗр те лармаҫ. Вара тарӑхса ҫитнӗскер Ной: «Лар, шуйттан», — тит. Вара Шуйттан хӑпарса ларать, токӑ вӑл Ноя курӑнмаҫ тит. Ҫурма ҫулта Ҫӗлен кусен карапне шӑтарать, леш Шуйттанӗ Ҫӗлен пулнӑ тит те. Вара вӗсем Арарат тӑвӗ ҫине ҫӳлех хӑпаримаҫ, ҫурма ҫултах чарӑнаҫ. Чылай вӑхӑт иртсен Ной кайӑксене ҫӗр ҫӳппи илсе пыма хушса ярать. Пӗри те илсе пымаҫ, вара Ной кӑвакарчӑна тархасласа ярать. Кӑвакарчӑн ҫӗр ҫӳппи илсе пырать. Нойпа арӑмӗ кайла таврӑнаҫ. Вӗсен йӑхӗ ӗрчесех пырать. Эпӗр те вӗсен йӑхӗ пулатпӑр тит.

Ӗлӗк потопчен кӗленчепе шу илсе ҫӳренӗ, ҫампа ҫӗре хопласа илнӗ тит. Халь чӗлӗм хыпса ҫӳреҫ, ҫампа та тӗнче пӗтес пулсан вотпа пӗтет тит. Ӗлӗкхи потоппа пӗтнӗ ҫынсем шу айне полса йолнӑ, вӗсем халь те шура пурӑнаҫ тит.

## 1391

Ҫӗр ҫине шыв тулнӑ чухне Ной хӑй кимми ҫине ытти мӗнпур чӗрӗ чунпа пӗрле ҫӗлене те илсе кӗрет. Акӑ кимӗ тӗпне шӑши кӑшласа шӑтарать те, кимӗ ӑшне шыв кӗме пуҫлать. Ҫӗр ҫине тулнӑ шыв чакса ҫитич-

ченех çĕлен çав шăтăка хăйĕн хӳрипе питĕрсе шăтăк витĕр шыва кĕме чарса тăрать. Шыв чакса çитсен кимĕ çине шыв кĕрсе тулса путасран çăлнăшăн мĕнпур чĕрĕ чун çĕлене: «Мĕн ыйтсан çавна паратпăр», — тесе сăмах параççĕ. Çĕлен вĕсене хирĕç: «Мĕн тутлă — çавна парăр», — тет. Çавăн чухне пăван: «Тĕнчере этем юнĕнчен тутли нимĕн те çук», — теме тытăннă. Анчах пăван сăмах хушма ĕлкĕриччен чĕкеç вĕлт çеç вĕçсе пынă та пăван чĕлхине çыртса татса илнĕ. Çĕлен çилленсе чĕкеçĕн хӳрине  çыртса татнă тет. Çавăнпа чĕкеç юплĕ хӳреллĕ пулса юлнă. Пăванăн чĕлхи татăлнипех ĕмĕрех му-у-у тесе муласа, уласа çӳремелле пулчĕ тет. Чĕкеçĕн ĕмĕр-ĕмĕр этем тавралăнче чĕпĕ кăларса, чĕвĕлтетсе, юрласа пурăнмалла пулчĕ тет.

### 1392

Халĕ эпир иккĕмĕш тĕнчере пурăнатпăр. Малтан урăх тĕнче пулнă. Вăл тĕнче шыв илнипе пĕтнĕ.

Тĕнчери халăх пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăнма пуçланă. Вĕсем Турра та, вырăнти пуçлăхсене те пăхăнми пулнă. Пуçлăхсем те пĕр-пĕринпе тăтăшах хирĕçнĕ. Ку Турра кӳрентернĕ. Вара вăл çĕр çине тĕрлĕ чирсем, инкексем, выçлăхсем янă. Халăх пинĕ-пинĕпе вилнĕ. Анчах та ку хура халăх пăлханнине чарма пултарайман. Вара Турă пăлханакан халăха шыва путарса вĕлерме шутланă. Анчах çĕр çине пĕр çын та хăвармасан хăйне асăнакан никам та пулас çуккине те питĕ лайăх пĕлнĕ вăл. Çавăнпа çĕр çине кашни вĕçен кайăках, тискер кайăках пĕрер мăшăр хăварма шутланă. Пĕлсех, çынна та хăварма шутланă ĕнтĕ.

Ку таврара çемйипе Ной ятлă ăста платник пурăннă. Вăл никампа нихăçан та хирĕçмен. Ĕçлеме 18—20-шер сехет ĕçленĕ, апла пулин те вăл хăй пурнăçне ниепле те юсаса ярайман, яланах чухăн пурăннă. Çавăнпа та Турă Ной çемйине вĕлермесĕр хăварма шут тытнă.

Пĕррехинче Ной хăйне кирлĕ йывăç шыраса ялĕнчен аяккарахри вăрмана кайнă. Часах вăл хăйне кирлĕ йывăç тупнă та касма пуçланă. Шăп та лăп çав вăхăтра ун патне шурă сухаллă, шурă çӳçлĕ старик пулса Турă пынă та унпа сăмах пуçарса янă.

— Эсĕ тӳрĕ кăмăллă çын, ĕçчен, çавăнпа та эпĕ сан патна килтĕм, — тенĕ Турă Ноя.

— Эсĕ кам пулатăн-ха? — ыйтнă Ной.

— Эпĕ Çӳлти Турă пулатăп. Тĕнчере халăх питĕ усалланса кайрĕ. Вĕсене шыва путарса, тĕнчере çĕнĕ, таса кăмăллă ĕçчен йăх пуçарса яма сан çемьене хăварма шутларăм. Ку вăл тата пĕр уйăхран пуçланĕ, хĕрĕх куна пырĕ. Çак пĕр уйăх хушшинче санăн тĕнчери мĕнпур чĕр чуна, вĕçен кайăка, хурт-кăпшанка, пĕрер мăшăр валли çимелĕх çимĕç хатĕрлесе, пысăк кимĕ туса хумалла. Сан киммӳ çинче усал-тĕселе вырăн пулмалла мар.

Ной Турă куçран çухалсанах кимĕ валли йывăç шырама пуçланă. Ной иртен пуçласа каçчен ĕçленĕ, хăш чухне çĕрле те ĕçленĕ, Турă каланă срука кимме туса çитермелле пулнă. Хăй мĕн ĕçленине Ной арăмне те каласа паман. Турă хушнă вăхăт çитесси вунă кун çех юлсан Ной арăмне хĕрĕх кунлăх çемье валли апат-çимĕç хатĕрлеме каланă, анчах мĕншĕн кăна тумаллине арăмне ку хутчен пĕлтермен-ха.

Вăхăт çитме пилĕк кун юлсан потоп пуласси çинчен Ной кимми çин-

че ун валли вырӑн ҫукки ҫинчен Усал пӗлнӗ-пӗлнех. Хӑйне ҫӑлса хӑварас ӗҫре вӑл Ной арӑмӗпе усӑ курма шутланӑ. Вара Ной хӑй мӗн ӗҫленине, кимӗ мӗншӗн хатӗрленине арӑмне пӗтӗмпех каласа панӑ. Шуйттан хӑйне кимӗ ҫине вырнаҫтарма пулӑшу ыйтнӑ.

— Кимӗ патне ҫитсен эсӗ кимӗ ҫине лармасӑр кутӑнланса тӑр. Вӑйлӑ ҫумӑр ҫума пуҫлӗ. Ҫавӑн чухне упӑшку: «Кӗр, усал арӑм!» — тесе калӗ. Ун чухне эсӗ те, эпӗ те кӗрсе ларӑпӑр. Лешӗ унпа килӗшнӗ.

Каланӑ вӑхӑт ҫитнӗ, Ной хӑй те киммине туса ҫитернӗ. Вара Ной хӑй ҫемйине кимӗ патне илсе пынӑ. Кимӗ патне часах тӗрлӗрен тискер кайӑксемпе вӗҫен кайӑксем те мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн пыма пуҫланӑ. Ной вӗсене кимӗ ҫине кӗртме тытӑннӑ. Унта Усал та ҫитнӗ, анчах ӑна Ной кӗртмен. Часах пӗтӗм чӗр чун кимӗ ҫине кӗрсе вырнаҫнӑ. Ной арӑмӗ ҫех кимӗ ҫине лармасӑр кутӑнланса тӑнӑ.

Кӗтмен ҫӗртен аслати авӑтма, ҫиҫӗм ҫиҫме, витрелетсе ҫумӑр ҫума пуҫланӑ. Кимӗ ҫине лармалли пусма ҫурри таран шыв айне путнӑ пулин те Ной арӑмӗ кимӗ ҫине кӗмесӗр кутӑнланса тӑнӑ-халӗ. Юлашкинчен Ной тарӑхса ҫитнӗ те арӑмне: «Лар, усал арӑм!» — тесе кӑшкӑрса пӑрахнӑ. Арӑмне ҫак сӑмах ҫеҫ кирлӗ пулнӑ. Вӑл ҫавӑнтах кимӗ ҫине хӑпарса ларнӑ. Унпа пӗрле Усал та кӗрсе ларнӑ. Часах таврана шыв тулса ҫитнӗ, кимӗ тапранса кайнӑ.

Кимӗ хӗрӗхмӗш кун ишнӗ. Таврари ҫӗре вун пилӗк аршӑн тарӑнӑш шыв хупласа илнӗ. Кушак кайӑкӑн ҫими икӗ-виҫӗ кун каяллах пӗтсе ҫитнӗ. Вара вӑл кимӗ тӗпне кӑшлама пуҫланӑ та часах ӑна шӑтарнӑ. Кимме шыв кӗме пуҫланӑ. Шӑтӑка питӗрме йывӑҫ та пулман. Хурӑн пуҫлӑ ҫӗлен хӑй хӳрипе шӑтӑка чикнӗ те мӗн шыв чакичченех унтан кӑларман. Кимме шыв кӗме чарӑннӑ. Анчах ниҫта та пӗр тип ҫӗр те пулман, пӗтӗмпех шыв хупласа илнӗ пулнӑ. Вара Ной шыв тӗпӗнчен хӑйӑр илсе тухса ҫӗр кӗвӗлтерме пӗтӗм шыра пурӑнакан чӗр чуна шыва кӑларса янӑ. Лешсем пӗри те хӑйӑр илсе тухман, вӗсем хӑйсем шыв тӗпӗнче пурӑнма пултарнӑ, вӗсене типӗ ҫӗр кирлӗ пулман. Вара Турӑ ҫилленнӗ те вӗсене ӗмӗр-ӗмӗр шывра пурӑнмалла тунӑ.

Юлашкинчен ку ӗҫе тума кӑвакарчӑн килӗшнӗ. Вӑл шыва чӑмнӑ — тӗпе ҫитеймен, иккӗмӗш хут чӑмнӑ — каллех ҫитеймен, виҫҫӗмӗш хут чӑмнӑ та унта вӑл чылаях тӑнӑ. Вӑл ишсе тухнӑ, ун ҫӑварӗнче пӗр чӗптӗм ҫӗр пулнӑ. Кӑвакарчӑн ҫӑварӗнчи ҫӗрне сурса кӑларнӑ та, ҫавӑнтах тем пысӑкӑш ҫӗр лаптӑкӗ кӗвӗлнӗ. Унтан ҫавӑнтах вӑрмансем те юхан шывсем пулса тӑнӑ. Кӑвакарчӑн ҫӑварӗнчи тӑпраран пӗр талӑк хушшинче пӗтӗм ҫӗр чӑмӑрӗ пулса тӑнӑ тет.

Ной кимӗ шӑтӑкне чикнӗ ҫӗлене тав туса хӑй мӗнле чӗр чун юнӗпе тӑранса пурӑнас тенӗ, ҫавӑнпа пурӑнма ирӗк панӑ. Куншӑн ҫӗлен тем пекех савӑннӑ. Вӑл кам юнӗ тутлӑраххине пӗлме вӑрӑм тунана янӑ. Вӑрӑм туна кӗске вӑхӑтрах пурин юнне те ӗҫсе тӗрӗслесе тухнӑ. Чи тутли этемӗн пулнӑ. Вӑрӑм туна кун ҫинчен ҫӗлене пӗлтерме васканӑ, анчах пӗлтерейӗмен, чӗкеҫ унӑн чӗлхине ҫыртса татнӑ. Ҫӗлен вӑрӑм туна нӑйлатнине нимӗн те ӑнланман. Ҫӗлен чӗкеҫе тарӑхнӑ та хӑйне тытса ҫиме хӑтланнӑ, анчах чӗкеҫ вӗҫсе кайма ӗлкӗрнӗ. Ҫӗлен хӳрин варринчи тӗкӗсене татса илме ӗлкӗрнӗ.

— Вӑрӑм туна кам юнӗ чи тутли тесе каларӗ? — ыйтнӑ Ҫӗлен юлашкинчен.

— Ҫӗлен-калтанӑн терӗ, — тенӗ Чӗкеҫ йывӑҫ тӑрринчен.

## Çĕр çăтни

*Сăртлă-туллă е шурлăхлă-путăклă вырăнсенче авалхи этеме тĕрлĕ хăватсемпе усал вăйсем курăннă. Çĕр сирпĕнсе тухнине е путса кайнине вăл Турă умĕнче çылăха кĕнипе ăнлантарнă. Çылăхсем купаланса кайсан Çĕр путса анать, хăйпе пĕрле çылăхлă çынсене çăтса ярать имĕш.*

*Пысăк çылăх шутне тăванăн пурлăхне вăрланине, качча каякан хĕрĕ амăшĕн япалисене пил ыйтмасăр илсе кайнине, пиччĕшĕпе йăмăкĕ пĕрлешнине, тăван-йăхташа е ентеше йывăрлăхра пулăшманнине кĕртнĕ. Тискер çынсем тăтăшах усал ĕçсем тăвакан (çынна çаратакан, вĕлерекен) вырăнсене те «çĕр çăтать» тенĕ.*

*Çĕр çăтса тискерленнĕ вырăнсенче вĕреçĕлен пулать, арçурисем çӳреççĕ, автан авăтать, туй-çуй шавлать тенĕ. Ун пек çĕрте çӳрекен çын çухалса каяссипе хăратнă. Вăл вырăнсенче калмак каланă.*

*Çĕр путса кӳлĕ пулнă айлăмсене тасалнă вырăн тесе шутланă, унта чӳк ирттернĕ, шывпа выляннă.*

### 1393

Çĕр вăл чĕрĕ япала: сывлать, куçать, юхать, улшăнать. Çĕр — чĕрĕлĕх амăшĕ, çынсен сăпки. Пăсăк çынсем амăшне манса каяççĕ. Вара вăл чăтса тăраймасть. Ахлатса сывласа ярать е лаштах каять, е хуçăлса анать. Çĕр кансĕрĕшĕн çĕр мăкри, лпри, какăрĕ, сехмечĕ, вăпри тата ыттисем савăнаççĕ. Шуйттан савăнать, ырăсем хурланаççĕ.

### 1394

Вăл, Çĕр акри теекенни, мĕнпур çĕр çинчи усалтан асли теççĕ вĕрӳçĕсем.

### 1395

Пирĕн ялтан 3—4 çухрăмра çурçĕр еннелле Çĕр çăтнă вырăн пур. Ĕлĕк-авал ку вырăнта пĕр ял пулнă тет. Çак ялти пĕртăвансем: пиччĕшĕпе шăллĕ аппăшĕпе йăмăкне качча илнĕ тет. Вĕсен туйĕ пĕр вăхăтрах пулнă тет. Çакăн пек мăшкăла Турă чăтайманнипе вĕсен туйĕ вăхăтĕнче çак яла çĕр çăтнă тет. Ун хыççăн вара çав вырăнта шăп çур çĕр тĕлĕнче автансем авăтнă тет.

### 1396

Ĕлĕк çумăр çумасан çĕр вăрланă. Кĕрӳшне авланман çамрăк каччăна тунă. Кайран çав каччăн вара авланма юраман. Авлансан çĕр çăтнă.

### 1397

Ялтан инçетре, Эпеç ялĕпе çумăн, пирĕн ялăн çĕрĕ пур. Çак вырăна Çĕр çăтнă вырăнĕ теççĕ. Çак ят ана мĕнрен пулса кайнă теççĕ ваттисем.

Ĕлĕк пĕр хĕр хăйпе пĕртăван пиччĕшне кайнă тет. Туй çак вырăнтан иртнĕ вăхăтра çĕр икĕ пая пайланса кайса уçăлчĕ тет те туй халăхне çĕр çăтрĕ тет. Вара çак вырăна «Çĕр çăтни» тенĕ.

## 1398

Ялтан инçетре «Çĕр çăтни» текен вырăн пур. «Çĕр çăтни» çинчен акă мĕнле каласа параççĕ. Хĕре хăйпе пĕртăван пиччĕшне качча парасшăн пулнă тет. Хĕрĕ каясшăн мар тет. Туй çĕмĕрттерсе пырать тет çав хушпусемпе. Уй варринче тытăнчĕç тет ташлама. Хĕрĕ калать тет: «Çак намăса куриччен пире пурне те çĕр çăтинччĕ», — тесе. Вара çавăнтах туйĕ-мĕнĕпех çĕр çăтса анса кайрĕ тет. Калăм каç пулнă тет ку. Халĕ те унта калăм каç шăп çур çĕр тĕлĕнче туй сасси илтĕнет тет. Çав «Çĕр çăтни» текен вырăнта курăк ӳсмест, шăтсан та типсе ларать.

## 1399

Пĕр хĕрпе каччă, çуллахи акатуйра курса пĕр-пĕрне килĕштерсе пăрахаççĕ тет. Каччи Пуянкассинчен тет, хĕрĕ юнашар ялтан.

Пурăнсан-пурăнсан каччă хĕрсĕр çав тери тунсăхлать тет. Вара ывăлĕ амăшне калать тет:

— Анне, эпĕ авланатăп, ман вăхăт çитнĕ ĕнтĕ, — тет.

Амăшĕ ыйтать тет:

— Хĕрĕ ăçтисем вара вăл? — тет. — Камсен йăхĕнчен, ашшĕ-амăшĕ камсем унăн?

Ывăлĕ кăштах шухăшласа тăрать те:

— Питĕ лайăх хĕр вăл, — тет. — Ашшĕ-амăшĕ те пур унăн. — Ывăлĕ хĕр кам йăхĕнчен пулнине калать.

Хĕр ашшĕ ятне илтсен, амăшĕн чĕри яштах чиксе кайрĕ тет, анчах ним те шарламарĕ тет. Ывăлĕ тухса кайсан амăшĕ тур умне чĕркуçленсе ларса макăрса ячĕ тет:

— Ах, Турăçăм! Мĕн тăвас? Ман ывăлăн ашшĕ вĕт-ха вăл хĕрĕн ашшĕ... — тет.

«Икĕ тăван пĕрлешсен, нихçан та ырлăх курман», — тесе амăшĕ текех пĕччен хурланса йĕрет.

Акă туй вăхăчĕ те çитрĕ тет. Каччă енчисем, ретнери ватăсем, хĕр илме тухса каяççĕ тет. Пуянкассинелле килнĕ чух вăрман витĕр тухсан çаксене çӳлтен Турă курать тет те: «Эх, кусем кайран хурлăх куриччен халех пĕтчĕр», — тесе калать тет. Вара çав вăхăтрах çĕр аялалла анса каять тет. Малта пыракан хĕрпе каччă тата туй халăхне çĕр çăтса ярать тет. Çав шăтăк халь те пур.

## 1400

Пирĕн ял пуссинче ялтан аякра та мар «Çĕр çăтни» ятлă вырăн пур. Çак вырăнтан ĕлĕк аслă çул иртсе кайнă тет. Пĕррехинче çак çулпа туй иртсе кайнă тет. Хĕрĕ хăйне ирĕксĕр качча панăшăн питĕ хурланса макăрнă тет. Вăл вара: «Çĕр çăттăр мана çакăнтах», — тесе тилмĕрнĕ тет. Çав вăхăтрах çĕр çурăлса кайнă тет те пĕтĕм туй халăхне çĕр çăтнă тет. Çав вырăнта кайран «Çĕр çăтни» ятлă панă тет.

Халĕ çав вырăнта çĕр путăк тăрать тет. Çав путăкра çулла яланах тулли шыв тăрать. Шăпланса итлесе тăрсан, шыв таçта çĕр тĕпнелле шăнкăртатсах юхса кĕнине илтме пулать. Малтанах çак вырăнта хăвасем хунанă тет. Халĕ вара çав хăвасем çĕр çăтнин пĕр айккине çеç тăрса юлнă.

## 1401

Лачкасси хĕрне, çинçе иилĕклĕ, йăрăс пӳллĕ, акăш уттиллĕ сарă хĕре çичĕ ютри нĕрсĕр куштана, пуян ывăлне, ирĕксĕр качча панă. Лачкассинчен тухса кайнă чухне татăлса макăракан телейсĕр хĕр, хĕвел тухăç еннелле пăхса сăхсăхнă та: «Çичĕ ютра хĕн куриччен тăван ялта çĕр çăттăр», — тенĕ. Çав самантрах пĕтĕм туй халăхĕ, лаши-мĕнни масар çĕр айне анса кайнă. Хĕрĕпе каччи, çĕн çынсем, путнă вырăнта пӳрт пысăкăш шывлă шăтăк пулса юлнă. Ытти туй халăхĕ путнă вырăнта пĕчĕкрех шăтăксем шыв пулса тăнă. Ĕлĕкрех çынсем, çĕн çынсен шăтăкне 40 тилхепе сыпса, вĕçне чул çыхса ярса виçнĕ тет, анчах чулĕ тĕпне çитеймен тет. Çав вырăнта халĕ те 6—7 шăтăк тăрать.

## 1402

Лачкассипе Тăрмăш хушшинче тарăн лакăмсем пур. Вĕсем пурĕ 17 пулнă. Халĕ 7 юлнă. Çав лакăмсене «Çĕр çăтни» теççĕ.

Çав çулпа туй пынă. Чи малти кӳминче хĕр ларнă. Хĕрĕ каччине юратмасть: «Мана ма çĕр илмест-ши?» — тенĕ тет. Вара туйĕ çавăнтах çĕр айне анса кайнă. Шăтăксем пурте пĕр йĕрпе тӳп-тӳрĕ вырнаçнă. Унта хĕрĕх тилхепе ярса пăхнă, çапах çитеймест.

## 1403

Çĕр çăтнă çырма хĕрринче виçĕ кил полнă: вăлсам пĕр-пĕринпеле ротня полнă, хĕр парса хĕр илнĕ пĕр-пĕринпеле. Туй вăхăтĕнче вăлсене çĕр çăтнă. Çав вырăнта карян нумайччен атан сассисем илтĕннĕ. Вĕре çĕлен тохат теççĕ.

## 1404

Сăхăтпуç ятлă ялта çĕр çăтнă вырăн пур. Пĕрре çав ял çуммипе туй иртсе пынă. Вĕсем пынă чухне урапа хутавĕ* тухса ӳкнĕ. Вара вĕсем пăтана çĕр çăттăр тенĕ. Çапла каласанах урапи, лаши, çынни-мĕнĕпе çĕр çăтнă. Вара çав вырăнта виçĕ кун шавласа тăнă. Çав вырăн халĕ те лакăм тăрать. Пĕр çирĕм çул маларах çав шăтăка шыв юхсах кĕрсе кайнă, халĕ вĕсем лăпăр-лапăр пăрахнипе питĕрĕннĕ.

## 1405

Пăшнар варĕпе тĕрлĕ легендăсем çыхăннă. Тахçан çак варпа туй иртсе пынă тет. Туйĕ ку варпа çĕрле иртнĕ. Мĕншĕн тесен каччипе хĕрĕ икĕ ялтан пулнă. Ку ялсем хирĕççе пурăннă имĕш, çавăнпа туй ял çыннисенчен вăрттăн пулнă. Анчах та кун çинчен пĕлнĕ тет. Вара: «Ку туя çĕр çăттăр», — тенĕ тет те, чăнахах та, туя çĕр çăтнă тет. Халĕ вара çав вăрттăнлăха пытаракан вырăнта çĕрле яланах туй юрласа иртет имĕш.

Тепĕр тĕрлĕ калани те пур. Çав вар урлă кĕпер хунă тет. (Вăл кĕперĕ халĕ те пур. Ун урлă ачасем шкула çӳреççĕ.) Çав кĕпер урлă туй иртсе пынă тет. Кĕперĕ çирĕп пулман тет те, туй çырмана сикнĕ тет. Çавăнтанпа çав кĕпер çинче çĕрле, 12 сехетре, туй юрлать тет.

---

* Урапа пăти.

### 1406

Мăнçырма пуссинче пăр Аслă çаран текен шурлăхлă вырăн пурччĕ (халь шурне пĕр вун пилĕк çултанпа тин сухалаççĕ). Çав шурпа вунă-вун пилĕк туй лав иртсе пынă чухне пĕтĕмпех путса кĕрсе кайнă пулать те вĕсен вырăнне шур пулса юлнă пулать. Туйĕ Элпуç енчен килнĕ тет. Качча каякан хĕрĕ тепле амăшĕнчен вăрттăн амăш япалине вăрласа чикнĕ пулать. Амăш туй халăхĕпе хĕрĕ тухса кайсанах хĕрĕ çапла вăрласа кайнине сиснĕ те çиллипе: «Кайнă çĕрте çĕр çăттăр», — тесе ылханчĕ тет. Туй халăхĕсем çав ылханнă вăхăтра кĕç Аслă çаран тĕлне çитнĕ те путнă вара. Ватăсем калаççĕ: «Эй, çавăн чухнехи пурнăç епле аван пулнă пуль-çке. Пур енчен те типтерлĕ пулнă пулмалла. Ваттисем те хисепре пулнă пулмалла. Турри те мĕн ыйтнине, мĕн кĕленине панă пулмалла. Халăхĕ те пĕр çемье пекех шăкăлтатса пурăннă пуль-çке».

### 1407

Пирĕн ялăн çурçĕр енче, пĕрер çухрăмра, пĕр пĕчĕкçĕ кăна ката пур. Унта юмансем çеç ӳсеççĕ. Юман кати те теççĕ-ха ăна. Те хăй пĕчĕкрен, те йывăççисем сайраран пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне витĕрех курма пулать. Хăй пĕчĕкçĕ пулин те, витĕр курнать пулин те унта мăн çынсемех атаща-аташа каяççĕ тет. Киле килме ниепле те çул тупма çук тет. Пĕрре пирĕн анне те, кăмпана кайсан, аташса кайнă-ха унта. Киле тухас тесе çул шырап-шырап тет, ну, ялан вара пĕр вырăна пырса тухап тет.

Каçпа унта усалсем тухаç тет, арçурисем туй тăваç тет. Вăл катара ĕлĕк таврари ялсенчи çынсем тĕрлĕ чӳксем тунă тет. Киремет вырăнĕ тет вăл. Çампа пит хăратать теççĕ унта.

Тата ĕлĕк пирĕн яла, тахăш ялтан ĕнтĕ, туй килнĕ тет. Çав ката тĕлне çитсен çĕр çурăлса кайнă тет те, хĕрпе каччă ларнă тăрантасне çĕр çăтнă тет. Çампа арçурисем савăннипе ялан туй тăваççĕ теççĕ.

### 1408

Пирĕн Анаткас Сурăм вăрманĕнче çухатса яракан вырăн пур, ăна Тăхăр юпа теççĕ. Çав вырăнта тăхăр юпа ларать. Ĕлĕк çав вырăнта туйран килекен халăх, лаши-мĕнĕпех шурлăха кĕрсе кайса, кĕрлесе пынипе пурте вилнĕ. Çавсене асăнса лартнă пуль теççĕ çак тăхăр юпана. Вăрмана кăмпана, çырлана кайсан çак вырăнта обязательно çухатса ярать. Çапкаланса çӳрен-çӳрен, çав вырăнтан тухаймастăн. Асăнса çăкăр татки пăрахса парсан, сулахайри пушмака хывса сылтăммине тăхăнсан, сылтăммине сулахая тăхăнсан тин тухма пулать тет.

### 1409

Пирĕн патра пĕр пысăк вăрман пур. Çав вăрманта ĕлĕк вăрă-хурахсем хуçаланнă. Каçпа иртен-çӳрен çынсене çаратса, вĕлерсе пурăннă. Пĕррехинче çак вăрман урлă туй арăмĕсем туя каймалла пулнă. Хăйсем çинче кĕмĕл амасем* пулнă. Пурĕ вĕсем çиччĕн пулнă. Вăрă-хурахсем çав сич

* Ама — мăй çыххи.

туй арăмне те вĕлерсе, амисене туртса илнĕ. Виллисене вăрман кĕтессине шăтăк чавса пытарнă. Çавăнтан пуçласа кашни çул, туй арăмĕсене вĕлернĕ кун, çур çĕрпе туй юрри питĕ хытă янăрать тет. Тата питĕ хытă макăрни илтĕнет тет.

## Тĕнче пĕтни

*Тĕнче пĕтесси çинчен калакан хайлаллă халапсем йышлă мар, анчах çынсен асĕнче вĕсем çирĕп упранса тăраççĕ. Çĕр чăмăрĕ çинче ахăрсаманлă тапхăрсем темиçе те пулнă, вĕсем сăмахлăхра палăрса юлнă. Тĕнче уçлăхĕнчи тăватă хăватран пĕри — Шыв, Çĕр, Вут, Çил — виçесĕр ахăрса кайсан Çĕр пĕтет. Пĕринче вăл шăнса ларма, тепринче çунса типме пултарать.*

*Вилнисемшĕн ахăрсаман хăрушă мар. Çылăх çуккисене Çӳлти тĕнчене «сăвап тăпри» илсе тухма пултарать. Аслă тĕнче вилĕмсĕр тесе каланă чăвашсен «Турă кĕнекинче».*

### 1410

Ахăрсаман — тĕнче пĕтнĕ чухнехи вăхăт. Ахăрсаман чухне Çĕр хĕрлĕ тăпра таран çунса килмелле.

Вара вилнисем чĕрĕлеççĕ, «сăвап тăпри» витĕр çĕр çине тухаççĕ.

Сăвап тăприне çынна пытарнă чухнех касаççĕ. Чăн малтан пĕри (вилекен кама хушса хăварнă, çавă) çынна пытарнă чухне тăваткал тăпра касса кăларса илет. Ăна «сăвап тăпри» теççĕ. Вăл тăпрана çын пуçĕ тĕлне тупăк айне хурса хăвараççĕ.

Ăна каснă чух «вилнĕ çын (ятне калаççĕ) алăкĕ» тесе калаççĕ. Вăл тăваткал тăпра пит кирлĕ, хаклă япала. Ахăрсаман килсен вилнĕ çынна çав тăваткал тăпра çĕклесе, çĕре уçса кăларать.

### 1411

Тĕнче пĕтесси çинчен те кала-кала хăварнă ват стариксем (ватта чăваш питĕ хисеплет). Тĕнче йĕри-тавра тимĕр карта çавăрса илĕç (телеграф), йĕри-тавра вутлă çĕлен пулĕ (чукăн çул).

* * *

Пĕтĕм тĕнчене чукун çул çавăрса илсен пурин аллинче те хут купăс пулĕ. Унтан вара хĕвел тухăçĕнчен хĕвел анăçне çитиччен чукун çул пулĕ. Çав çулпа антихрис килĕ, алă купăс, хут купăс каласа. Вăл çав тери илемлĕ калать. Ăна никам та итлемесĕр чăтаймас. Кам чăтакан çăлăнать.

* * *

Тутарсен антихрисĕ çĕр айĕнче. Çĕр хута ĕçлет вăл, хĕвел тухсан чарăнать. Ăна каллех ту хупласа илет. Çав ту айĕнчен тухсан тĕнчене антихрис килет.

* * *

Али Пихампар пуртти тинĕсрен кашни кун çут çанталăка курма тухать. Тĕнче пĕтнĕ чух вăл тĕнче пĕтерме тухмалла.

Çут тĕнче малтанах пулнă. Çав тĕнчере питĕ вĕтĕ халăх пулнă, пĕр такана вун иккĕн тытса пуснă. Çав халăх чавса тăршшĕ анчах пулнă. Талай шывĕ (потоп) вăхăтĕнче вĕсем пурте шыва кайса вилнĕ.

**1412**

Тĕнче тепре пĕтнĕ чухне шывпа мар, вутпа пĕтĕ.

**1413**

Тĕнче пĕтес умĕн вăрçă пулать. Вăл тимĕр хĕç-пăшалпа усă куракан вăрçă пулать. Ун чух хĕç-пăшалтан тимĕр карта çавăрĕç.

**1414**

Ёлĕк халăх потоппа пĕтиччен çăвара шыв сыпса çÿренĕ. Çав халăх потоп пулсан шывпа пĕтнĕ. Хальхи халăх çăвара вут хыпса çÿрĕ, вутпа пĕтĕ.

**1415**

Ахăрсаман кунĕнче мĕнпур тĕнчери çынсем хăрушă сута çакăнта, Истампула, пуçтарăнмалла.

# IX. ЛЕШ ТĔНЧЕ

*Чăваш хайлалăхĕн тепĕр пысăк пайĕ — Леш тĕнчери Сарă кун çĕршывĕпе Хăямат çинчен каланисем. Леш тĕнче — Вилнисен патшалăхĕ. Авалхи этемшĕн кун-çула хак пама Леш тĕнчери пурнăç пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çылăхсăррисем Çăтмаха лекеççĕ, айăплисене Турă сучĕ Сар кун çĕршывне ярасса шаннă. Айăпĕсене каçарма çуккисем Тамăка лекеççĕ тенĕ. Леш тĕнчере те, çапла вара, икĕ хирĕçле пулăм: пĕр енче — Çут тĕнчери пекех сарă çанталăклă çĕршыв, тепĕр енче тĕттĕмлĕх патшалăхĕ — Хăямат. Хăяматра Шуйттан пуç пулса сӳрет, ăна пулăшаканĕсем тамăк хуранне çунтараççĕ, çылăхлисене асап кăтартаççĕ.*

*Шуйттанпа Явăл ачисем çĕр çине тухса ашкăнса çӳреме пултараççĕ. Вĕсене ашкăнма Ахрат çырмисем, Чăтлăх вăрмансем, Эсремет вырăнĕсем пур. Пăскăчсемпе тухатмăшсем пулăшнипе вĕсем çынсене йăнăш çулпа уттараççĕ, вăрăпа, ĕçкĕпе, кахалпа явăçтараççĕ, вăрçă-харçă туса параççĕ. Вара кам та кам Чинави кĕперĕ урлă каçаймасть, çавсене Тамăк хуранне е Кахăр тĕпне сиктереççĕ.*

*Шуйттан йышĕ çĕрте кăна мар, шывра та пурăнать. Шывра Хеври, Атăрма, Шаккăн, Сӳкене, Авăрхат, Ахрамат тата ытти вăйсем чĕр чунсене, çынсене пулăшаççĕ е сиен кӳреççĕ — кашни хăйĕн ĕçне тăваççĕ.*

*Хаярсемпе усалсене чӳк парса, сăмах каласа, япала пăрахса çырлахтараççĕ.*

*Леш тĕнчери несĕл ваттисемпе тачă тăвансемпе Çут тĕнчере пурăнакан тăхăмсем çыхăну тытаççĕ. Вĕсем Ваттисене (вилнисене) апатçимĕç хываççĕ, асăнаççĕ, Çимĕкпе Юпара масар çине пырса калаçаççĕ. Мăчавăрсемпе юмăçсем несĕл пуçĕсемпе калаçса ăс илни çинчен хывнă халапсем те пур.*

*Леш тĕнче çинчен каланă хайлаллă халапсем ытларах чухне «тет» юмахĕсене куçса кайнă.*

## Çĕрпе шыври усал-тĕсел. Шуйттан

1416

Шуйттан — усал сывлăш. Усал чун. Шуйттансем шывра, шыв тĕпĕнче, çĕр тĕпĕнче, тамăкра пурăнаççĕ. Çынсене усал, сăтăр тăваççĕ, çылăха кĕртеççĕ. Çын чунне хăйсем патне илесшĕн. Турăран хăраççĕ. Çылăхсăр çын чунне нимĕн те тăваймаççĕ. Вĕсем çын умĕнче качака пек, вăкăр пек, пăру пек курăнаççĕ.

## 1417

Ĕлĕк шуйттансем пит нумай пулнă. Вара Турă шуйттансем ҫине тарăхса ҫитет те вĕсенчен хăтăлма шутлать. Турă арăмĕ Шуйттана ерсе пурăннă. Шуйттансене пĕтермелли ҫинчен илтсен Турă арăмĕ питĕ кулянса каять. Вара Шуйттана кайса калать. Шуйттанĕ: «Мана ҫăлас тесен ҫакăн пек ту: Турă ҫĕр ҫинчи пĕтĕм чĕр чуна пĕр пысăк кимĕ ҫине лартĕ. Эсĕ ан лар, шуйттан, лар темесĕр ан лар», — тет.

Ирхине Турă пĕтĕм вĕҫен кайăка, чĕр чунсене пĕр кимĕ ҫине лартрĕ тет. Арăмĕ кăна лармасть тет. «Лар тата, ма лармастăн?» — терĕ тет Турри. Лешĕ ним те шарламасть тет. Турă татах: «Лар», — тесе каларĕ тет. Арăмĕ вырăнтан та хускалмарĕ тет. Вара Турă тарăхнипе: «Лар, шуйттан», — тесе каларĕ тет. Ҫакна илтсен Шуйттан тӳрех кимĕ ҫине кĕрсе ларчĕ тет.

Ҫапла вара халĕ те ҫĕр ҫинче шуйттансем пур теҫҫĕ. Ăна хĕрарăм ҫăлса хăварнă.

## 1418

Авал ҫĕр ҫинче турăсемпе шуйттансем кăна пурăннă тет. Пĕррехинче Турă хăйĕн пахчинче ҫынсене улма таттарнă тет. Вăл пĕр улмуҫҫи ҫинчи улмисене татма хушман тет. Вăл улмуҫҫи ҫинче ылтăн улмасем пулнă тет. Анчах икĕ ҫын итлемесĕрех ҫак улмасене татнă тет. Ҫакăншăн Турă вĕсене мăйракаллă, хӳреллĕ тунă тет те пĕр тарăн вара кайса янă тет. Ҫӳлтен тăпрапа витнĕ тет. Ҫав вырăнта тамăк хуранĕ пулса тăнă тет. Унта вара майĕпенех шуйттансем ĕрчесе кайнă тет.

## 1419

Шуйттансем кушакран пулса кайнă. Хăшĕсем шуйттан йытăран та пулса кайнă теҫҫĕ. Ҫынсем те шуйттана тухма пултараҫҫĕ тет. Эпĕ ати* каланине астăватăп. Пирĕн ялта пĕр Якур ятлă старик пурăнатчĕ тет. Вăл юмăҫ пулнă. Ҫĕрле ашкăнса ҫӳретчĕ тет йытă пек пулса.

Пĕрре ҫакна ҫаклатнă тет, йытă тесех ҫаптарнă тет хĕп-хĕрлĕ пуличчен. Тепĕр кун вара чăнах та старик-юмăҫ килĕнче ахлатса ҫеҫ выртнă тет. Хăй вара юн айĕнчех пулнă тет. Ҫапла вара ҫынсем вăл шуйттан пулнине ĕненнĕ.

## 1420

Пĕррехинче ҫĕрле ҫывăракан хĕрарăма пĕр ҫын пырса вăратнă та ҫапла каланă: «Атя-ха хăвăртрах, тутарсем сан хурусене вăрлаҫҫĕ», Хĕрарăм тăчĕ тет те пĕрле пыраҫҫĕ тет. Арҫын ăна юхан шыв патне илсе каять тет. Шыв ҫине пусиччен нумай та юлман тет, хĕрарăм: «Эй, Турă, ҫырлах!» — тесе хăраса кăшкăрса ячĕ тет. Ҫав самантра ҫын ҫухалнă. Вăл шуйттан пулнă. Енчен те хĕрарăм турра асăнман пулсан вăл ăна шыва путарнă пулĕччĕ.

## 1421

Шуйттансем кушакран пулса кайнă тет. Теприсем юмăҫсенчен е йытăсенчен пулнă теҫҫĕ. Шуйттан шывра пурăнать. Шуйттан ҫынна тапăнса ăна вĕлерме пултарать. Шуйттан ҫын пек те, килти выльăх-чĕрлĕх пек те пулма пултарать тет.

---

* Атте.

## 1422

Коракăшри шĕшкĕре, Митюк варĕнче, хĕр Шуйттан пурччĕ. Вăл кăркка аçи пулса авăлтатчĕ.

Тата Вăрăм вара ĕлĕк пĕр тарса килнĕ салтака вĕлерсе пытарнă, çавă хурах кăшкăрса çӳретчĕ. Сипинке варĕнче туй арăмĕ пулса ташласа юрлатчĕ. Вархан хырĕ кутĕнче çĕр кисрентерсе мĕкĕретчĕ. Вăрăм уйра арçури пулса, капан пек пулса çӳретчĕ тет. Пирĕн ял хушшинче çĕр çӳретчĕ тет, пысăкăш пӳрт пекчĕ тет. Ĕлĕк Мăн вăрманта нумай кăшкăратчĕ тет. Пĕрре чăнахах илтрĕм: Куçма Матвей пӳртекӳнче* ача макрать.

## 1423

Шуйттан текенни тата качаканни пек сухаллă тет, хырăмĕ тем пысăкăш тет, путек тăвакан качаканни пек тет. Ăна Урхас Кушкă вăрманĕнче вăрман ĕçлекенсем курнă тет. Вĕсем ун чухне вăл чупса пынине курнă тет.

## 1424

Пирĕн карчăкпа иксĕмĕрĕн уй урлă ĕçке каймалла пулчĕ. Лашапа каймa тухса. Çул çине пĕр така тухрĕ те пирĕн умра пырать. «Карчăк, — тетĕп, — эсĕ тилхепе тыт-ха, эпĕ çав такана çуна çине тытса хурам», — тетĕп. Мана така хуллен-хуллен утсах чылай илсе кайрĕ. Карчăка калатăп: «Карчăк, эсĕ ĕçке кай та, эпĕ така хăваласа юлнине ан кала, эпĕ такине киле илсе каятăп», — тетĕп. Хайхи такана хăваласа пыратăп. Пĕве урлă каçмалла. Чуть çеç тытаттăм, така шыва шăмпăрт тутарса анса кайрĕ. «Эх, ку така пулмарĕ-иç, шуйттан пулчĕ-иç», — тесе киле кайса çывăртăм. Киле çитсен шăпах 12 сехет. Вара тепĕр кунне тин çеç ĕçке тухса утрăм. Шуйттана куçпа куртăм, ĕненетĕп пуррине.

## 1425

Тахçан авал, те пин çул каялла, те çĕр пин çул каялла, таçта мурта: те тĕнче варринче, те тĕнче хĕрринче пĕр усалтан та усал хĕрарăм çуралать. Çав усал хĕрарăм никама та ирĕккĕн пурăнма памасть, никама та канлĕн пурăнма памасть.

Пурăнсан-пурăнсан çав усал хĕрарăм усалтан та усал ача çуратса парать. Ун ачи сăнĕпе этем пек пулать, тĕсĕпе чĕр чун пек пулать. Ăна Качака тесе ят параççĕ. Çав усал качака никама та ирĕккĕн пурăнма памасть, никама та канлĕн пурăнма памасть.

Пурăнсан-пурăнсан çав усал качакаран тата усалтарах чĕр чун çуралать. Çав чĕр чун çурри качака пек пулать, çурри хĕрарăм пек пулать. Çынсем çав усал шуйттана хăйсен хушшинчен хăваласа яраççĕ. Çав хăваласа янă усал шуйттан çĕр тĕпне анса каять те йăва тăвать. Çав йăвара усалтан та усал шуйттансем çуратма тытăнать.

Çапла майпа вăл çĕр тĕпĕнчи пĕтĕм пурнăçа хăй аллине илет. Кам çĕр тĕпне лекет — çав усал шуйттан аллине лекет. Усал шуйттан хăй аллине лекнĕ çынпа мĕн тăвас тет — çавна тăвать: е вут çинче ăшалать, е чĕреллех

* Пӳрт умĕнче.

кăшлать, е чун тӳсейми асап кăтартать. Ы-ы-ых, ытла та йывăр-çке шуйттан аллинчи пурнăç! Ах, ан лекмелле пултăрах шуйттан аллине!

Мĕн? Шуйттан çук тетĕр-и? Çук та пулĕ, хирĕçлесе тăмастăп. Çук пулсан тахçан авал пулнă. Тахçан авал пулсан татах та пулма пултарать. Пулма пултарать пулсан — çав шуйттана паллама пĕлес пулать. Шуйттан вăл, мĕнле калас, каснă лартнă качака. Качакана курнă вĕт эсир? Курнă. Апла пулсан мĕн кирлĕ тата? Качакапа шуйттан лăп та шăп пĕртăван! Качакан та мăйраки пур — шуйттанăн та мăйраки пур, качакин те сухалĕ пур — шуйттанăн та сухалĕ пур, качакан та çăмĕ пур — шуйттанăн та çăмĕ пур, качакан та чĕрни хури пур — шуйттанăн та чĕрни хури пур, качакан та хӳри пур — шуйттанăн та хӳри пур. Качакан хӳри кĕскерех — шуйттанăн хӳри вăрăмрах, апла пулсан вăл çĕр çинчи пĕтĕм качакаран усалтарах!

Уйрăмлăхĕ те вĕсен çав кăна. Хам курнă тетĕр-и? Эпĕ хам качакине курнă, шуйттана пĕрре те курман. Шуйттан çинчен пĕрремĕш хут аннерен илтрĕм, иккĕмĕш хут аттерен илтрĕм. Аннепе аттене хăйсен аппĕ-амăшĕсем каласа панă, хăйсен аппĕ-амăшĕсене татах та хăйсен аппĕ-амăшĕсем каласа панă... Чăн малтанхи сăмах камран тухса кайни халь те пулин паллă мар, ун çинчен халь те пулин никам та пĕлеймест. Пĕлекенсем вилсе пĕтнĕ, пĕлменнисене ун пек-кун пек япаласем çинчен пĕлме те кирлĕ мар. Кирлине пĕлес пулать, кирлĕ маррине пĕлмесен те юрать. Юрать-и?

## 1426

Шуйттан шывра пурăнать. Пирĕн йысна пулла кайсан курнă тет. Пысăк пĕвере шăмпăр-шăмпăр сикет тет, мăйракаллă, хӳреллĕ тет, çăмлăскер тет. Каçпа вут хурсан тухрĕ тет шывран, вут хĕрринче ăшăнать тет çаврăна-çаврăна, кучĕ хĕп-хĕрлĕ тет. Урăх пулла кайман вара хăранипе.

Вăрман касма кайсан Сантри пичче курнă тата. Каçпа çапла вут кутне пычĕ тет те кутне сарса ăшăнать тет. Сантри пичче ăна кутĕнчен вут пуççипе тĕртрĕ тет те, Шуйттан: «Ап-ап-ап-ап!» — тесе кăшкăрса вăрмана шăтăр-шăтăр! çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕ тет. Сантри пичче пит тĕреклĕччĕ те вăл пирĕн, хăраса тăман пуль çав.

## 1427

Пирĕн ялта Элекçей ятлă çын пурăннă. Вăл та хăй ĕмĕрĕнче Шуйттан курнă тет.

Пĕррехинче çак çывăрма выртнă. Ак кăна такам тĕртсе вăратать тет: «Тăр, Элекçей, атя Юхмана», — тесе калать тет. Элекçей тăчĕ тет те умĕнче хура мĕлке тăнине курах кайрĕ тет. Лешĕн куçĕсем çиçеççĕ, хăй мăйракаллă тет. Элекçейĕн чĕлхи те çĕтрĕ тет, урисем те çыхланса ларчĕç тет. Çапах хăйне темле вăй Шуйттан хыççăн уттарать тет, хăйне чарма халĕ çук тет. Çитсе тăчĕç тет Пăла хĕррине. «Çырми пĕрре ярса пусмалăх çеç, каç, Элекçей», — тесе калать тет Шуйттан. Элекçейĕн çамки çине тар тапса тухрĕ тет. Ăна çаннипе шăлса илнĕ май: «Каçас-ши, каçас марши?!» — тесе шутларĕ тет. «Турă пулăштăр», — тесе каçма хатĕрленчĕ тет, сăхсăхса илчĕ тет. Пăхать: умра Шуйттан çук та.Умра вара — тарăн, шывлă чăнкă çыран.

Шуйттансем вĕсем леш тĕнчере пурăнаççĕ тет. Вĕсем çине пăхма та

хӑрушӑ тет. Тӑрмаланчӑк ҫӳҫлӗ, мӑйракаллӑ, хӑлхисем хупах ҫулҫи пек пысӑк усӑнса тӑраҫҫӗ тет. Сӑмси сысна сӑмси пек тет. Аллисем вӑрӑм та ҫинҫе тет, урисем кукӑр, хӑй ырхан тет. Хӳреллӗ тет ҫакскер. Шуйттансем вӗсем ӗмӗрӗпех тамӑк хуранӗ патӗнче тет. Вилнӗ ҫын ҫылӑхлӑ пулсан тӳрех тамӑк хуранне персе анать тет. Унтан вара тухма ҫук тет. Мӑйракаллӑ шуйттансем сенӗк пек юплӗ патакпа пӗр вӗҫӗмсӗр хуранри ҫынсене пӑтратаҫҫӗ тет.

Унтан тата шуйттансем шӑп та лӑп 12 сехетре масар ҫинчен тухса ҫынсене хӑратса ҫӳреҫҫӗ тет. 12 иртсен, автан пӗрре авӑтсан каялла кӗрсе каяҫҫӗ тет.

## 1428

Пӗррехинче манӑн аннесем Юхма пасарне кайнӑччӗ. Вӗсем каҫпа тин ҫитрӗҫ. Манӑн лаша леҫме каймалла.

— Лаша кӗтӗвӗ Мартин хӑртнине кайнӑ пуль, — терӗҫ ачасем.

Вара эпӗ лаша ҫине утланса лартӑм та вӗҫтертӗм. Кайма инҫерех каймалла ҫав. Ну лашине те хӑвалап ӗнтӗ. Вӑрман хӗррине ҫитсен кӗтӳ ачине:

— Назаров! — тесе кӑшкӑртӑм.

— У-у-х-х! — терӗ мана хирӗҫ.

Эпӗ савӑнсах кайрӑм. Ну, часах лашасем курӑнаҫҫӗ пулӗ-ха тесе лашана майӗпен кӑна уттаратӑп.

— Назаров, ӑҫта эс? — тесе кӑшкӑртӑм.

— У-у-х-х! — тет.

Сасӑ илтӗннӗ ҫӗре ҫитрӗм те, ҫӳҫ-пуҫ вирелле тӑрса кайрӗ, ҫурӑм ҫине сив тар тапса тухрӗ. Лаша хӑрт-харт! тӑвать. Ман умра шурӑ ҫӳҫлӗ, шур сухаллӑ, шур кӗпеллӗ, шур йӗмлӗ старик тӑра парать. Ку ман паталлах ҫывхарать. Эпӗ кӑшкӑрса ятӑм та лашана каялла ҫавӑрса эх-х! илтереп вӗт! Карттус та ӳксе юлчӗ. Эй! Карттус хуйхи-и-ха ун чух! Каялла ҫавӑнса пӑхатӑп та — ман хыҫран шур анчӑк пырать. Лашана тата хытӑрах хӑвалама пуҫларӑм. Хӑмӑшла ҫырми урлӑ каҫсан тепре ҫавӑнса пӑхрӑм та — анчӑк кӗпер айне ансах кайрӗ. Эпӗ питӗ хӑрарӑм.

Киле ҫитрӗм те лашана кил картишне ятӑм. Пӳрте кӗтӗм те анне ҫумне хӑпарса выртрӑм. Лаша кӗтӗвӗ унта та пулман, выльӑх ҫырминче пулнӑ.

* * *

Шуйттансемпе арҫурисем ӗлӗк-авал полнӑ. Халь вӗсем ҫоккӑ.

Топерчӑ пӗрре эпӗ лаша кӳлтӗм те (ку хӗлле полса иртсе) вӑрмана хӑрӑк торат поҫтарма карӑм. Каҫ полса килет. Хам майӗпен йорлатӑп. Ҫанталӑкӗ шотсӑр лайӑх, пӗлӗт ҫинче ҫӑлтӑрсем выляччӗ, ойӑх пӑхать. Топерчӑ вӑрман хӗррине ҫитрӗм, хӑш чохне хам лашапа та калаҫса илетӗп. Ҫапла май вӑрман варринех ҫитрӗм. Хам татах та маларах каяс теп хайхи. Ҫапла чипер кайнӑ ҫӗртенех хайхи ман лаша хартлатма поҫларӗ. Малалла ни за што каймас. Лашая ҫапатӑп, но лаша ман малалла каймас. Торат илес тесе аяккалла пӑхрӑм та корах карӑм тонката ҫинче Шойттана. Хӑй тем пушши, веҫ хӑраса ярмалла. Тонката ҫине ларнӑ та сохалне, шорӑскерне, тораса ларать поҫ торипе. Эх, эп вара лашая каялла ҫавӑртӑм та килелле ним пӑхмасӑр карӑм. Вотти ҫинчен те шотламарӑм. Киле ҫитсен порне те каласа патӑм.

## 1429

Пĕр старик ҫапла кашни каҫах вăрмана хурал пӳртне кайнă. Ҫав пӳрте Шуйттан кашни каҫ пăтă пĕҫерме пынă.

Ку старик ĕнтĕ хурал пӳртне те кайма хăранă, мĕншĕн тесен Шуйттан ăна хăш чухне апатлантарнă. Пĕррехинче ҫапла старике тăн параҫҫĕ: «Эс ҫывăрма выртас умĕн пуҫ вĕҫне кушака выртттар, ура вĕҫне йытта», — тенĕ. Акă хайхи каҫ пулсан старик ҫавăн пек турĕ тет. Шуйттан чĕр чунсен шăршине туйрĕ тет те кĕме хăрать тет. Вара вăл кăмака мăрйинчен кĕрсе ҫын пулса тăчĕ тет. Ку Шуйттан старик патне пĕр утăм кăна тунăччĕ тет, ҫав вăхăтра кушак мăрлатса ҫухăрса ячĕ тет, йытти те хыттăн вĕрсе ячĕ тет. Шуйттан аран-аран урисене пуҫтаркаласа шăвăнчĕ тет.

## 1430

Нумай ҫул каялла тĕнчере арăмĕпе упăшки пурăннă тет. Вĕсен ачипăчи пулман пулин те хăйсем питĕ тату пурăннă тет. Хайхи ҫак мăшăра Шуйттан асăрхать тет те: «Кусене ҫапăҫтарас», — тесе шухăшлать тет. Упăшки килĕнче ҫук чухне ку Шуйттан курмăш пулса пырать тет те арăмне тем те пĕр каласа хĕтĕртет тет. «Сан упăшку начар, эсĕ вăл каҫпа ĕҫрен килсен, пуҫне пăхма ларнă вăхăтра кăҫҫуна* ҫĕҫĕ чик. Меллĕ вăхăт тупăнсан мăйĕнчен сĕр, — тет. Ку арăм Шуйттана ĕненет. Шуйттан вара савăнсах каять. Ну, юрĕ.

Халь упăшкине ĕҫе кайса хĕтĕртет.

— Сана арăму паян пуҫа пăхнă чухне вĕлересшĕн, кăҫҫине ҫĕҫĕ чикет, — тет.

Хайхи упăшка килне таврăнать, ҫиет, унтан яланхи пекех арăмне пуҫне пăхма ыйтать...

Ну, вара пуҫларĕҫ тет ҫапăҫма. Арăмĕн пĕр чĕрĕ вырăн юлман тет.

## 1431

Пĕр ялта пĕтĕм халăх ҫылăха кĕрсе пĕтнĕ тет. Вĕсем пĕр-пĕринне вăрланă, вĕлернĕ, иртĕхсе пурăннă. Ҫавăн пирки Турă ҫилленсе ҫитет те ку халăха пĕтерме шутлать. Пĕр ҫын ҫеҫ таса пулнă. Ку Емĕлкке ятлă пулнă тет. Турă ăна ҫӳлтен калать:

— Эй, ҫылăхсăрри, ырантан сирĕн яла шыв илет, ҫăлăн, тухса тар ялунтан, — тет.

Ку ҫын ҫав сасса ҫеҫ илтет. Туррине курмасть.

— Ку мĕн япала пулчĕ-ха, илтĕнчĕ ҫеҫ-и? — тесе каллех ĕҫлет. Тепĕр ирхине каллех ҫавăн пек сасă илтĕнет. Ку Емĕлкке каллех хăнк та тумасть.

Акă кăнтăрласем ҫитсен, чăнах та, кусен ялне шыв иле пуҫлать. Емĕлкке ҫуртне шыв пымасть-ха. Ку ҫав сасă чăн пулнине ăнланса илет те арăмĕпе килĕнчен тухса тарать.

Ял хапхинчен тухсан ун умне кимĕ тухса тăрать, кĕсменĕсем те пур. Йăпăр-япăр кĕрсе ларать ку, арăмне та ларма хушать, анчах лешĕ хăрать. Кĕҫ ял ҫине вутлă ҫумăр ҫума пуҫлать, кусем патне те ҫывхарса килет. Емĕлкке тарăхса ҫитет те арăмне:

— Лар, часрах, шуйттан, ав ҫумăр килет, — тет.

---

* Кĕсье.

Кусем патĕнчех тăракан Шуйттанĕ илтет те: «Ак мана та ларма чĕнет», — тесе чалт! çеç сикнĕ Емĕлкке арăмĕпе пĕрле кимĕ çине. Çапла вара çĕнĕ тĕнчере арçынпа хĕрарăм хушшинче шуйттан та куçса килет. Халĕ те пурăнать тет вăл халăха вăрçтарса, çылăха кĕртсе.

## 1432

Ĕлĕкех пирĕн асанне качча анчах килнĕ тет, мунча хутнă тет те, пурте кĕрсе тухрĕç тет, ку кăна кĕмесĕр юлнă тет. Çĕрле пĕр вунă-вун пĕрсенче кайрĕ тет мунча кĕме, пўртри ĕçсене пĕтерсен. Çапăнса ларать тет мунчара. Унччен те пулмарĕ тет, кўршĕри Марине инке пырса кĕчĕ тет мунча кĕме.

— Эп те санпа мунча кĕретĕп-ха,— терĕ тет çапла.

Шыв курки хăйĕн хыçĕнчех пулнă тет. Курка илме Марине аллине тăсрĕ тет те, алли çитмест тет. Вара алли тем вăрăмăш тăсăлчĕ тет курка шыраса. Таз илме тăрсан та алли тем вăрăмăш тăсăлать тет.

Асанне çакна курсан Турра асăнма тытăнтăм тет, вара çакă пач çухалчĕ тет. Шуйттан Марине пек пулса кĕнĕ тет мунчана.

## 1433

Шуйттансем тĕп сакайĕнче тата мунчара пурăнаççĕ тет. Вĕсем мунчари лапка айĕнче пурăнма юратаççĕ тет. Çынсем мунча кĕрсе пĕтерсен сĕм çĕрле, тĕттĕмре, лапка çине ларса питĕ хытă çапăнаççĕ тет.

Ĕлĕк пирĕн кукка хăй пĕччен мунча кĕме кайнă. Лапка çине çапăнма хăпарнă. Ак шуйттансем лапка айне сĕтĕрме пуçларĕç тет, уринчен туртаççĕ тет. Вара лапка айне сĕтĕрсе антарнă, çавăнтан вара пирĕн кукка тытăнчăклă, чарăнарах калаçма тытăннă.

Пирĕн ват асатте пĕрре вăрманта аташса кайнă, çĕрле пулнă. «Çак çулпа каймалла, çак çулпа каймалла», — тесе умра çынсем çул кăтратса пыраççĕ тет. Шуйттанĕсем çын пек курăннă.

Ак асаттене пĕр çырма-çатрана илсе çитерчĕç тет. Çак çынсем эрех ĕçтерме пуçланă асаттене.

«Восподи», — тесе каланă асатте. Çавăн пек каласанах никам та юлман тет. Асатте пĕр-пĕччен пĕр шăтăкра ларатăп тет. Аллăмра нимле эрех те çук тет, ун вырăне ут пăхĕ тет. Çапла шуйттансем аташтарнă.

Çакă питĕ усал вырăнта пулса иртнĕ. Ĕлĕк кунта хĕрсем хырăм пăрахнă тата темле усал ĕçсем тунă, çавăнпа та хăрушă çак вырăнта, тĕрлĕрен усалсемпе шуйттансем курăнаççĕ кунта.

## 1434

Ĕлĕк мунча хутсан çапла пулнă. Мунча пулса çитсен малтан арçынсем кайнă. Арçынсем тухиччен хĕрарăмсем мунча алкумне кайсах тăнă. Арçынсем хыççăн çийĕнчех мунча кĕмелле тет. Арçынсем мунчаран тухсан каярах юлса пырсан, арçынпа хĕрарăм хушшинче шуйттансем мунча кĕреççĕ тет.

## 1435

Пĕр çын мунчана кайнă тет. Унта ăна шуйттансем тытса вĕлернĕ тет те ун пыршисене лапка йĕри-тавра кумса хунă тет.

### 1436

Туррăн помощник пулнă тит. Ун кашни кунах Турă патне пымалла пулнă тит. Анчах та Турă помощникě, аслă ангел, хăй хуçа пулашшăн пулнă тет. Çыннисем каяç Турă патне, ангелě çок. Турă ыйтать: «Аслă ангел ма килмер?» — тит. Çыннисем калаççě тит: «Вăл хăй пристол лартать», — тиç. Турă вěсене аслă ангелăн пристолне тěксе антарма хушать. Çыннисем хăраç тěксе антарма. Тепěр кунне опять ыйтать Турă çынсенчен. Çыннисем: «Хăратпăр», — теççě. Турă тěксе антармах хушать. Вара пěр çынни хăра-хăрах кăшт тěкет тит те, пристол йăтăнса анать тит. Ангел тăн çухатать. Тăна кěнě çěре унăн майрака, хӳре шăтса тухнă. Каять Турă патне, ыйтать: «Мěншěн ман майракапа хӳре шăтнă?» Турă ăна виçě çул хěвел тухăç еннелле пăхса чěркуççи çинче ларма хушать. Аслă ангел килěшмест. Турă ăна калать: «Эс пуçлăх пулашшăн пулнă пулсан, тавай пуçлăх пул, токă кěçěн ангелсен мар, усалсен пуçлăхě», — тит. Вара Турă аслă ангела çěр айне антарса ячě тит. Вара ăна ěмěр-ěмěрех хуран вěретме хушнă тит.

### 1437

Шуйттан шăннă пулнă та пěр киле кěрсе ăшăнам-ха тесе Петěр пиччесем патне йăпшăнса кěрет. Петěр пичче арăмě Инна çăкăр хурать пулнă. Тахшине çилленсе, Инна мăн акка çăкăр чěресне чăлантан илсе кěрсе, Турра асăнайман пулнă. Шуйттан чěресе кěрсе те ларать. Карчăк çăкăр хурать. Çăкăрне лăканă чух çăкăр калекě енчен енне панă-ха вăл шуйттана. Ун чухнех шуйттанăн янаххи чалăшнă пулнă Инна мăн аккан çăкăр калекě лекнипе. Нимле майпа та тухса тарайман шуйттан. Инна мăн акка кăвас чěрес виттине, чěресне хěрес виçě хут хывса, çыхсах хунă. Шуйттан аптранă шухăшпе: «Ирхине тухса тараймасан мěн курăп çăкрине çăрнă чух? Янахсем вылянсах тăрěç вěт», — тет Шуйттан. Калаçни тěрěс пулнă. Инна мăн акка çăкăр çăрма пуçличчен питне çуса кěлтуса, питне хěрес хывать. Çăкăр çăрма пуçлать. Хытă çăрать. Хытă çăрсан чатнай* кăпăшкăпăш пулать тесе Инна мăн акка хай шуйттана веçех лапчăтать. Вилме вилмест шуйттан. Ак мăн акка çăкăр унать. Шуйттан пěр çăкăр çине лекет. Шуйттан савăнăçне, кушакě хуран çинче тěлěрет пулнă. Хуçа карчăкě пит çиллес çӳренипе хăраса, хуран çинчен кăмакана лартакан çăкăр çине ялт! сикет.

— Ăх, шуйттан кушакě, — тет Инна мăн акка. Çав вăхăтра çăкăрпа пěрле кăмакана кěнě çěртен хăтăлса юлать Шуйттанě. Вара уçă алăкран йăпăш туса тухса тарать анаталла чăлăш-чалăш шăмă-шаккине аран-аран сěтěркелесе, такăна-такăна пěр хутман мунчана çул тытать.

— Ăçта çӳрен халиччен? — теççě ытти шуйттанěсем. — Сана çухатрăмăр.

— Утайми пулнă, — тет пěри.

— Кам хěнерě? — тет хěрě.

— Кай, — тет Шуйттанě, — сана те лекě-ха. Мана веçех çěмěрсе пěтерчě хуçа карчăкě, — тет аманнă Шуйттан. — Ыратать çав, — çăварне тыткаласа пăхать Шуйттанě. — Вăт çӳре çынсем патне. Мунча лапки айěнче çеç хěсěнкелесе пурнасчě хăть, — тет.

---

* Хăпарту.

## 1438

Ёлĕк пĕр салтак таврăнать тет. Киле çитме нумай та юлмарĕ тет. Салтак пĕр яла кĕрсе çĕр выртма шутларĕ тет. Пĕр киле шаккарĕ тет, хуçи кĕртрĕ тет.

Кил хуçин арăмĕн çăмăлланмалла пулнă тет. Çав вăхăтра пӳрте Пӳлĕхçĕпе Шуйттан пырса кĕчĕç тет, ачана шăпа çырма калаçаççĕ тет: «Ку ача вун сакăр çула çитсен шыва кайса вилтĕр», — тесе. Çапла çырчĕç тет те тухса кайрĕç тет.

Акă ачана ят хумалла тет. Хĕреснашшĕпе хĕреснамăшне тупмалла тет. Хĕреснашшĕ вара салтак пулчĕ тет. Ачана вун сакăр çула çитсен çуралнă кунне асăнаççĕ. Салтак ача ашшĕсене калать:

— Ача вун сакăр çула çитсен шыва кайса вилмелле çырнă. Вăл шыва кайса вилесрен ялти пур тарасасене те витсе питĕрсе пĕтерĕр, — тет.

Анчах ача çапах пурăнаймасть: кил картинчи куритери шыва кĕрсе выртсах вилсе каять.

## 1439

Пĕр тăлăх хĕрарăм ача çуратма пуçлать. Çав вăхăтра кăмака хыçĕнче икĕ Шуйттан çак ачана хăçан вĕлермелли çинчен калаçса тавлашса лараççĕ тет. Вĕсем тавлашнине кăмака çинчи кушак веçех илтнĕ пулнă. Пĕр Шуйттанĕ ачине халех вĕлересшĕн пулнă. Тепри — çулланма пуçласан. Тавлашсан-тавлашсан вĕсем ачана вун сакăр çула çитсен пус карлăкĕ çине выртса вилмелле тăваççĕ. Ачи хĕр ача çуралать.

Шуйттансем калаçнине кушак хĕрарăма каласа парать. Хĕрарăм вара хĕрĕ вун сакăр çула çитессе хăраса кĕтсе пурăнать.

Акă сарă хĕр ӳссе çитет, вун саккăра кĕрет. Амăшĕ хăранипе хĕре шыв ăсма та кăлармасть, хĕрĕ вара амăшне яланах:

— Шыв ăсса килмелле мар-и? — тесе ыйтать.

Амăшĕ ăна çапах кăлармасть. Вун сакăр çул тултараспа хĕр ача пӳртрен чупса тухать те пус карлăкĕ çине выртса вилсе каять.

## 1440

Пурăннă Кулля текенскер. Çак питĕ укçашăн çуннă. Чул хулана укça тупма каять. Урамра ăна пĕр лайăх тăхăннă çын тĕл пулать. Вăл Кулляна калать:

— Атя манпа, эпĕ пĕлетĕп сана укçа кирлине, — тет.

Çак çын Кулляна пĕр лайăх çурта илсе кайрĕ. Çитрĕç те, çак çын Кулляна калать:

— Эпĕ сана укçа паратăп, анчах эсĕ мана хăвăн юнупа алă пусса пар, — тет.

Кулля килĕшет, пӳрнине çыртать те ал пусса хăварать. Вăл тухма тăрать, анчах куç хупса уçнă çĕре Санар шывĕ хĕррине çитсе те ларнă. Пăхать-пăхать — хăй ăçта ларнине палласа илет. Часрах кĕсйине чиксе пăхать — укçа кĕсьерех. Çав укçана илсен кĕсьере мĕн чухлĕ те пулин хăвармалла пулнă, вара укçа малтанхи чухлех пулса тăнă. Çапла Кулля шутсăр пуйса каять.

Пĕррехинче ун патне çĕрле такамсем пырса шаккаççĕ. Кулля хăй алă

пуснине манса та кайнă ĕнтĕ, унăн çамки çине шуйттансен пек мăйрака та шăтнă. Кулля шаккакансене уçса кĕртет.

Лешсем:

— Атя пирĕнпе, сана илме килтĕмĕр, — теççĕ.

Кулля аса илет те хăраса каять. Кусем шуйттансем пулнă. Кулляна илме килнĕ. Кулля Турра пуççапма тытăнать. Çав вăхăтра Кулляна питрен вăйлă çупса яраççĕ. Ку куçне хупать. Уçса пăхать — никам та çук: шуйттансем çухалнă.

— Кайран Кулляран çав укçана Павăл Петрович текенскер илнĕ теççĕ. Халăхра вара: «Çав укçана кам тытать, нумай пурăнаймасть, вилет», — теççĕ.

Ĕлĕкхи чăвашсем усал сывлăшсен шутне Кăрмасуна кĕртнĕ. Вăл çынсен чунне илен шуйттан пулнă.

Ялта пĕр çĕрме пуян пурăннă тет. Вăл Спритун ятлă пулнă. Пуян чи малтанах питĕ чухăн çын пулнă тет.

Вăл çапла пуяна тухнă. Ыйткалама тухса кайсан çул çинче аслатиллĕ çумăртан хăраса Вальăм хуçан шыв сикки айне пытаннă тет. Çумăртан хăраса кун патне тата икĕ шуйттан çури пырса тухаççĕ. Шуйттан çурисем Спритуна калаççĕ:

— Эсĕ çакăн пек асапланса çӳриччен пирĕн атте патне кайса чунна сут. Вара ĕмĕрех лайăх, тутă пурăнăçпа пурăнăн, — теççĕ.

Калаçупа килĕшме пӳрнине касмалла тет. Спритун: «Шуйттана чун сутап», — тесе юнпа алăк тăррине çырса хурать. Тепĕр кунхине йăм хура лашапа укçа илме каять Усал патне. Усалĕ Кăрмасунтан лаша туса хунă тет.

Пĕррехинче Юспенти Гордей Федорович Шăмата пасара кайрĕ тет. Каялла таврăннă чухне Килтĕш ялĕнчи Вăрăм Тихăн тимĕрçĕ патне лаша таканлаттарма пынă тет. Таканланă хушăра пĕр лаши çын пекех калаçнă тет:

— Эпĕ Спритун Михайлович пулатăп. Мана халĕ пурăнма йывăр, утланса çӳренипе шăм-шаксем ыратаççĕ, — терĕ тет.

## 1441

Ку ĕлĕкех пулнă, пирĕн асанне хĕр чухнех.

Сурхури каç пирĕн асанне хĕрсемпе сурăх ури тытма картана тухнă. Хĕрсем пурте сурăх урине тытнă та сурăхсен мăйĕсенчен, хура е шурă сурăх тытнине паллă пултăр тесе, мĕнпе те пулсан (хăю татăкĕпе) çыхаçыха янă.

Пĕр хĕр те сурăх урине тытнă, анчах сурăхне мăйĕнчен паллă пулма çыхса яма нимĕн те пулман. Çак хĕр вара хĕресне хывнă та çакса янă. Ирхине хĕрсем хăйсем çĕрле тĕттĕмре мĕнле сурăх тытнине пĕлме картана тухнă. Пурте хăйсем çыхса янă хăюллă сурăхсемех пулнă. Хĕрес çакса янă хĕр хăйĕн хĕресне илес тесе сурăх патне пырать тет те çухăрса ярать тет: сурăх пулман тет ун, шуйттан пулнă тет. Хĕрсем картана пынă вăхăтра шуйттанĕ картара пулнă. Хĕрес çакнипе вăл ниçта та тарайман — хĕрес урлă каçайман тет. Вара хĕрсем çава илсе кĕрсе çавапа туртса илнĕ хĕресе. Шуйттан çухалчĕ тет. Вара асаннесем сурăх ури тытма тухман тет никăçан та.

## 1442

Пĕррехинче улпут хăйĕн тарçисене мĕнле ĕçленине тĕрĕслеме кайрĕ тет. Çул çинче ăна Шуйттан тĕл пулчĕ тет те хăйне те пĕрле илме ыйтрĕ тет. Улпут килĕшес килмен çĕртен Шуйттана хăйпе илме килĕшрĕ тет: «Пытăрах. Тарçăсем эп Шуйттанпа туслă пулнине курсан лайăхрах ĕçлеме тытăнĕç».

Кăшт кайсанах вĕсем сысна кĕтĕвĕ патне çитрĕç тет. Пĕр сысни çĕр улми ани çине кĕрсе кайнине курсан: «Ах, шуйттан илесшĕ! Çĕр улмине йăлтах ватса пĕтерет!» — кăшкăрса ячĕ тет кĕтӳçĕ тарăхнипе.

Унтан утсан-утсан ана çинче пĕр ача макăрса ларнине илтеççĕ тет. Ăна амăшĕ вăрçса: «Мур илесшĕ, мĕншĕн макăратăн?», — терĕ тет. Унтан Шуйттанпа улпут малалла утрĕç тет. Вĕсем халăх пухăнса тăнă çĕре çитеççĕ тет, унтан çынсем калаçни илтĕнет тет: «Курăр-ха, мĕнле мăнтăрланса кайнă вăл. Ма Шуйттан сĕтĕрсе каймасть-ши ăна? — терĕ тет ушкăнри çынсенчен пĕри. Шуйттан, кĕтӳçĕрен сысна илменскер, амăшĕнчен ача илменскер, çынсем улпута ма Шуйттан илсе каймасть-ши тенине илтсе, улпута çурăмĕ çине çавăрса хурать те йăтса каять хăй патне. Унтанпа вара улпутсем çук тет.

## 1443

Пĕр арçын манах çулпа пырать тет. Кун шутсăр шыв ĕçес килет тет. Ăна хирĕç Шуйттан килет тет çын пек пулса. Шуйттан манахпа утса пычĕ тет. Шуйттан кунран ыйтать тет: «Эрех ĕçес килет-и, хĕрарăмпа çывăрас килет-и, çын вĕлерес килет-и?»

Манах шухăшлать. Хĕрарăмпа çывăрас — çылăх, çын вĕлерес — çылăх. Лучше эрех ĕçем-ха тет. Çитсе кĕчĕç тет кусем пĕр пӳрте. Хĕрарăмĕ пĕчченех тет. Упăшки вăрмана вутта кайнă тет. Шуйттанĕ тулта юлнă тет. Манах хĕрарăмран ыйтать тет: «Шыв ĕçтер-ха», — тесе. Лешĕ: «Лучше эрех парас пулĕ», — тет. Манах: «Юрĕ», — тет. Эрех ĕçеççĕ. Унтан манахăн хĕрарăм шухăшĕ кĕрсе кайрĕ тет. Кусем выртрĕç тет çывăрма. Шăп çав вăхăтра упăшки вăрмантан килсе кĕрет тет. Манах упăшкине пуртăпа касать те вĕлерет.

Çапла вара Шуйттан манаха эрех те ĕçтерчĕ, хĕрарăмпа та çывăрттарчĕ, çын та вĕлерттерчĕ тет.

## 1444

Ачасем ут пăхма кайнă. Вĕсем Арçури варĕнче вут хунă пулнă. Вĕсен питĕ çывăрас килнĕ тет. Анчах пĕр ачи çывăрман. Акă хăйхи вут çуннă çĕртен Шуйттан сиксе тухрĕ тет. Вăл ӳпле çӳллĕш вут чĕртсе ячĕ тет, çăварĕпе çулăм çуллама тытăнчĕ тет. Кайран çакна курса выртакан ача вар ыратнипе чирлесе вилчĕ тет.

## 1445

Пĕр ялта тăлăх ача амăшĕпе пурăннă. Пĕррехинче амăшĕ чирлесе вилсе кайнă. Ку ачан амăшне пытармалла полнă. Шăтăк чавтарма окçи полман тет, каякан çынĕ те çоккă тет. Амăшне пытарма кĕлтутарма пачăшкă патне кайнă. Кăна пачăшкă окçа çокне пĕлсен чирĕке те кĕртмен. Ним тума çоккипе ача хăях каять шăтăк чавма. Чавса çитерет те пĕр мăн кринка* ылтăн окçа топать. Окçине илет те чиркĕве каять. «Ман окçа пор,

* Чӳлмек.

кĕлту», — тет. Хай пачăшки пытарттарать ачан амăшне чан çаптарса. Ача кăна ылтăн окçа парать. «Ăçтан топрăн ылтăн окçа?» — ыйтать пачăшки. «Çапла-çапла, шăтăк чавнă чох окçа топрăм», — тет ачи. Пачăшкин окçине ачаран илес килсе каять. Ача патне килне пырать те: «Çăва çинчен окçа хоçи килчĕ, парса яма ыйтать», — тет. Ачи парса ямасть. «Кирлĕ пулсан хăй ман пата килтĕр», — тет. Пачăшки кĕрĕкне тӳнтер тăхăнать, мăйрака лартать поçĕ çине, маскă тăхăнать, пăру хӳри лартать те ача патне каять. Çĕрле полнă. Ача патне кĕрсен калать: «Эп пачăшкана ятăм окçа илме, эс парса яман, тавай окçана», — тет. Ачи хăраса парса ярать. Пачăшки килне çитет те кĕрĕкĕ-маскине хывмасăрах кринкинчи ылтăна шотлама ларать. Окçине шотласа пĕтерет те кĕрĕкне хывма тытăнать. Кĕрĕкĕ тир пек ыратать тет, хывма тытăнать — çыпăçсах ларнă тет, хăпăнмасть тет. Мăйракине те, хӳрине те ойăрма çок тет. Пачăшка çын коç омне корăнас мар тесе тĕпсакайне сикрĕ тет. Темиçе вырсарни кун иртрĕ тет çапла. Пачăшкăна шырама тытăнаççĕ. Тĕпсакайĕнче шыраса тупаççĕ. Онтан çăмлă, мăйракаллăскере сĕтĕрсе тохса хĕнеме тапратаççĕ. «Ан хĕнĕр мана, эп хамах пачăшкă», — тет. Ачаран окçа илнĕ хыççăн кĕрĕке хывманни çинчен калать. «Ярăр, порăнмастăп эп текех çынсемпе», — тет те арман пĕвине сикет тет. Çавăнтан полса кайнă тет вара шойттан.

## 1446

Çавалта хăш-хăш арман айĕнче усалсем пурăнаççĕ. Вăсене çуркунне, кĕркунне тата çулла ялан пĕр вăхăтра эрех ĕçтермесессĕн усалсем арман пĕвине татса яраççĕ. Тата арман тунă чухне арман айне хăш-хăш çын ача чĕрĕллех ларнă.

## 1447

Арман кĕлетĕнче сăра курки пек пĕр куçлă шуйттан пур теççĕ; арман шуйттанлă пулать теççĕ. Çĕрле чарнă армана авăртать теççĕ.

## 1448

Чăвашсем арманта шуйттан нумай пурăнать теççĕ, ăна çĕрле авăртакансем кураççĕ тет. Пĕр çын çĕрле арман авăртнă тет: вăл вăхăтра арман хуçи Хĕлип ятлă пулнă тет. Арман авăртакан çур çĕр çитес чух армана çăнăх катма кĕнĕ тет. Арман чул çинче пĕчиккĕ, шур сухаллă старик ларать тет; арман чулĕ тăпах чарăннă тет. Ку çын хăранипе арман хуçине калама чупса кĕрсе кайнă. Хĕлипĕ вăл сăмаха илтсен пĕрре те хăрамасăр, мăкăртатса тухать тет: «Татах тухса ларнă пуха*, çапла ларакан вăл», — тесе. Иккĕш юнашар утса пыраççĕ тет, анчах хăйсем пынă чух чул çинче нимĕскер те çук тет, чулĕ чиперех авăртса ларать тет.

## 1449

Унтан вара Шуйттанĕ тухрĕ тет те çисе ларнă чух калать тет: «Çак армана юсама пĕлмеççĕ çынсем: уна пĕр лав çатрака хурас пулать тата хăмла путранки хурас пулать, унтан пилеш хĕрес туса лартас пулать; вăл вара пит усăллă арман пулать», — тесе калать тет.

---

* Пулĕ-ха.

## 1450

Ĕлĕк-авал çынсем вилнĕ çынна ыраш улăмĕ çине вырттарса шыва кĕртнĕ. Ăна шыва кĕртнĕ хыççăн шыва кĕртнĕ татăкĕсене, ыраш улăмĕсене пĕрле çыхса виле пытарма кайнă чухне кĕпер айне или вар пуçне пăрахса хăварнă. Çав вырăна çитсен каçхине пыракан çынна çухатса янă. Эпĕ пĕрре каçхине çав вырăнпа иртсе пыратăп. Махорка чĕркерĕм те калатăп: «Шуйттан-усал пур теççĕ, мана çакăнта çухатса кăтарт-ха», — тетĕп. Хамăн яла çитесси пĕр çухрăм кăна юлсаччĕ. Чипер пынă çĕртех таçта кĕрсе кайса çул çухатса ятăм. Çӳресен-çӳресен каллех çухатса янă вырăна тухрăм. Но текех çухалмастăп тетĕп, утатăп, татах çĕтсе кайрăм. Çӳрерĕм-çӳрерĕм, каллех çав вырăна тухрăм. Но тухрăм та карарăм: «Но халĕ ĕненетĕп, — терĕм. — Тур çырлах, урăх ан çухатах», — терĕм те малалла утатăп. Чип-чиперех киле çитрĕм. Пĕр сехет çитнĕ. Çавăнтан вара шуйттан-усал пуррине ĕненетĕп.

## 1451

Пĕр карчăкпа старик пурăннă тет. Вĕсем тыр-пул акса хăварнă тет те, тырри начар çитĕннĕ тет. Кулянма пуçларĕç тет. Çаксем кулянниине Шуйттан курнă тет те пăхса çитĕнтернĕ тет. Питĕ вăйлă çитĕннĕ тет тыр-пулĕ. Вырма та вăхăт çитнĕ.

Пĕр ирхине старик уя тухнă тет те:

— Ах, мĕнле лайăх ăнса пулчĕ тыр-пул кăçал! — тенĕ.

— Сан тырру мар вăл, ман тырă вăл. Мана пĕр çулталăк ĕçлемелĕх ĕç тупса пар, вара санăн пулĕ, — тенĕ тет Шуйттанĕ.

Карчăккипе старикки калаççĕ тет:

— Сана пĕрремĕш ĕç: эпĕ ыран тăнă çĕре çак тыр-пула вырса, çапса, улăм купи туса, кĕлет туса унта тыррине пуçтарса, сăвăрса хур, — тенĕ.

Чăнах та, ирпе тăрсан тыр-пула çапса, вырса кĕлете кĕртнĕ, улăма купа туса хунă. Тĕлĕнсех кайнă карчăкпа старик.

— Урăх ĕç хушмалла, мĕнле ĕç хушăпăр, хушаймасан иксĕмĕр те вилетпĕр вĕт, — тесе хуйхăрнă старик.

— Тавай çĕнĕ çурт лартма хушатпăр, — тенĕ карчăкки.

Ирпе тăрса пăхаççĕ те — шап-шурă хитре пӳрт ларать тет. Тепĕр каçхине карчăкпа старик кулянниипе çĕр çывăраймарĕç тет.

— Айта вите тутаратпăр. — тенĕ старикки.

— Пире вите туса пар-ха, — тенĕ старикки Шуйттана.

— Юрать, — тенĕ Шуйттанĕ.

Ирпе тăнă çĕре каллех шур вите лара парать тет. Карчăкпа старик кулянниипе каллех çĕр çывăраймарĕç тет.

— Мĕнле ĕç тупса парас-ха, карчăк? — тет старикки.

— Урăх нимле ĕç те тупăнмарĕ-çке, — тет карчăкки. — Тупрăм, тупрăм шухăшласа, — тет карчăкки савăнса.

— Мĕн тупрăн? — тет старикки.

— Хамăн кăтра çӳç пĕрчине кайса пар та яп-яка туса патăр, — тенĕ карчăкки старике.

Старик пĕр кăтра çӳç, тура илет те Шуйттан патне каять тет. Шуйттанĕ тунката çине çӳçне хунă та турапа якатать-якатать, çаплах якатса пĕтерейместь тет. Паянхи кунччченех якатать тет.

## 1452

Пĕр Шуйттанăн пуян кинĕн чунне илме каймалла пулнă тет. Çав пуянăннех пĕр вăрă лашине çаратма каймалла пулнă.

Пырать тет вăрри çулпала. Кĕпер патне çитес умĕн курать тет, кĕпер çинче пĕр çын пирус мăкăрлантарса тăрать тет. Ку вăл Шуйттан пулнă. «Ăçта эс капла каян?» — тесе ыйтать тет Шуйттан вăрăран. Лешĕ калать тет пуян лашине вăрлама кайнине. Кайрĕç тет кусем пĕрле. Çитрĕç тет те чӳречерен пăхаççĕ тет. Пуян пăхрĕ тет те: иккĕн тăраççĕ тет. Уçса кӳртрĕ тет кусене. Пӳрте пĕччен çеç кĕчĕ тет вăрри. Шăпах пуян çемйи апата ларнă пулнă тет. Вăрра апата лартрĕç тет. Вăрă апат çиес умĕн Турра асăнчĕ тет. Çавăнтах сĕтел çинчи апат çĕрелле вирхĕнчĕ тет. Пуян кинĕ: «Апчху!» — турĕ тет. Вăрри: «Сывлăха!» — терĕ тет. Пурте тĕлĕнсе кайрĕç тет кун пек пулса тухнинчен. Вара вăрă пуяна каласа пачĕ тет. «Эпир иккĕнччĕ, Шуйттанпаччĕ. Эпĕ сан лашуна вăрлама килтĕм, Шуйттан — санăн кинӳн чунне илме, мĕншĕн тесен эсĕ кинне нихçан та «апчхи» тусан «сывлăха» тесе каламан, — тет. — Паян эпĕ сывлăха темен пулсан, санăн кинӳн чунне илсе каятчĕ», — терĕ тет. Вара пуян вăрра: «Лашана трантас кӳлсех парса яратăп», — терĕ тет. Вăрри: «Лашу та кирлĕ мар, лучше мана киле леçсе хăвар», — терĕ тет. Пуян килĕшет. Каллех кĕпер патне çитрĕç тет. Шуйттан каллех кĕпер çинче пирус туртса тăрать тет. Пуян Турра асăнчĕ тет те, Шуйттан шыва çурса кĕрсе кайрĕ тет. Çапла вара Шуйттан кинĕн чунне илеймерĕ тет.

## 1453

Ĕлĕк икĕ çын тату* пурăнаççĕ тет. Пĕрне-пĕри йывăр каласа çиллентермеççĕ тет. Çав çынсене Шуйттан питĕ вăрçтарасшăн çӳрет тет. Вăл пĕрре этем пулса вĕсем патне пынă тет. Шуйттан çапла çын пулса пынине тепĕр вăпăрлă çын пĕлсе тăнă та каланă Шуйттана: «Эсĕ ху Шуйттан, çак çынсене пĕрре те вăрçтараймастăн, хăçантанпа тăрăшса çӳретĕн ху! Нимĕн хайла та тупаймастăн çак çынсене çапăçтарма! Акă мана пăх-ха, эпĕ вĕсене часах çапăçтаратăп, халĕ вĕсем пит тату пурăнаççĕ», — тенĕ. Хай вăпăрлă çын пӳрт алăкне уçнă та пĕр çыннине: «Тух-ха», — тенĕ. Пĕр çынни тухнă. Шуйттанпа пĕрле тăракан çын тухакан çынна ячĕ те чăмăрпала, хăй: «Ме сана, ку уна валли, ак ку юлташу валли — ăна пар», — тесе хăлха чикинчен çапа-çапа кӳртсе ячĕ тет. Вăл кĕрсенех юлташĕ калать тет: «Мĕн пачĕ сана? Мана та пар-ха?», — тесе ыйта пуçларĕ тет. Лешĕ, тула тухнă юлташĕ, калать тет: «Ан ыйт, сана пама юрамасть», — тесе. «Пар, пар, мана та пама хушрĕç», — тет лешĕ. «Çу-ук, сана пама юрамасть», — тесе калать тет юлташĕ. Çапла чăнласах вăрçа пуçларĕç тет. Çавăнтан хай тула тухнă çын юлташне питĕ хытă çапса ячĕ тет. «Мĕншĕн çапан мана? Çынсем панине ху кăна илен, мана памастăн», — тесе вăрçать тет юлташĕ.

## 1454

Пĕррехинче хресчен вăрмана вут касма кайнă тет. Ун патне Шуйттан пынă тет те: «Мĕн тăватăн, хресчен?» — тесе калать тет. Хресчен вара: «Кил кăтартам, аллуна ак çакăнта чик, вара ăнланăн», — терĕ тет хресчен. Чикрĕ тет Шуйттан аллине савăл выранне çурăка, Шуйттана çав тĕлте

---

* Варлă, килĕштерсе.

тăма хушрĕ тет хресчен, хăй вара таçта кайса çухалчĕ тет. Шуйттан аллине туртать, туртса кăлараймасть тет. Вара хресчене кăшкăрса чĕнме пуçларĕ тет. Кăшкăрчĕ-кăшкăрчĕ тет. Никам та килмест тет. Шуйттан халь те вăрманта кăшкăрать тет. Хăш чух вăрмана кайсан халь те çав Шуйттан кăшкăрнине илтме пулать теççĕ.

## 1455

Пĕр ялта старик пурăннă тет. Çура çитсен çимелли пĕтсе çитнипе старик вăрмана кантра явма тухса каять тет. Вăрманта старик кантра явать-явать тет. Шуйттан çури сиксе тухрĕ тет: «Маççи, мĕн тăван вăл кантра явса?» — тет Шуйттан çури. «Эпĕ çак кантрана сире майракасенчен кăкарма яватăп», — тет. Шуйттан çури хăранипе утаманне калама кĕрсе кайрĕ тет. Унччен те пулмарĕ, Шуйттан çури лум йăтса тухрĕ тет.

— Атя, старик, çак лума кам çак кӳлĕ урлă ывăтса каçарать, — тет. — Старик, ывăт-ха хăва малтан, — тет Шуйттан çури.

— Хăва ывăт-ха, — тет старик.

Шуйттан çури аран-аран ывăтрĕ кӳлĕ урлă.

— Маççи, ывăт-ха эсĕ, — тет Шуйттан çури.

Старик лума аран-аран тытса тăрать.

— Маççи, ывăтсам.

— Чим-ха, чим, пĕлĕт уçăлтăр, пĕлĕт хушшине персе кӳртсереп*, — тет старик.

Шуйттан çури хăранипе старикрен лума туртса илсе утамана калама кĕрсе карĕ тет. Шуйттан çури тата сиксе тухрĕ ула кĕсре йăтса.

— Маççи, эсĕ çак кĕсрене кӳлĕ йĕри-тавра йăтса каçариратни? — тет Шуйттан çури.

Старик хăранипе ним тума аптрать.

— Хăва каçар-ха йăтса, — тет старик.

Шуйттан çури чăркăна-чăркăна кĕсрене йăтса каçарчĕ тет.

Старик калать Шуйттан çурине:

— Эсĕ аран-аран йăтса каçаратăн. Эпĕ пĕç хушшипе йăтса кӳлĕ йĕри-тавра чупса çарнатăп, — тет. Старик кĕсре çине утланса кӳлĕ йĕри-тавра вĕçтерсе çаврăнчĕ. Шуйттан çури хăранипе кĕсрене илсе кӳртсе карĕ.

Утамана калать Шуйттан çури:

— Атте, итле-ха. Эпĕ аран-аран кӳлĕ йĕри-тавра çĕклесе çаврăнтăм. Старик тытрĕ те пĕç хушшипе йăтса çаврăнчĕ, — тет.

Шуйттан çури каллех сиксе тухрĕ.

— Маççи, эсĕ кунтан мĕн парсан каян? — тет.

— Эпĕ кунтан пĕр шлеп ылтăн парсан каятăп, — тет старик.

Шуйттан çури ашшĕне калама кĕрсе карĕ. Старик шлепе шăтарать, шăтăк алтать те шлепне лартать. Шуйттан çури сиксе тухрĕ те ылтăн çĕклерĕ-çĕклерĕ, аран-аран тултарчĕ. Старик миха тапратаймасть, Шуйттан çури киле леçсе хума пулчĕ. Старик Шуйттан çурине ертсе килелле уттарчĕç тет. Шуйттан çури йытăран пит хăрать.

— Старик, сирĕн ялта йытăсем пур-и? — тет Шуйттан çури.

— Çук, — тет старик.

Кайсан-кайсан арман чулĕ тĕл пулчĕç.

* Кӳртсе яратăп.

— Старик, ку мĕн?
— Ку арăмсен кăнчала авăрламалли йĕкĕрĕлчĕ, — тет старик.
— Мана паратни?
— Ил кирлĕ пулсан, — тет старик.

Шуйттан çури арман чулне йăтрĕ те утать. Унччен те пулмарĕ, сасартăк йытă сиксе тухрĕ те, старик ÿскĕртсе ячĕ, йытă Шуйттан çурине вĕрме пуçларĕ. Шуйттан çури тарма хăтланса такăнса вилсе каять тет. Çапла старик Шуйттан çурине улталаса пуйрĕ тет.

Пĕр Шуйттан чĕлхи пĕлекен çыннăн ачи: «Атте, мана виличчен Шуйттан чĕлхине вĕрентсе хăвар-ха?» — тесе ыйтать тет. Ашшĕ: «Эп вилсен сÿсмен витĕр ман çинелле пăхайăр, вара вĕренен», — тер(ĕ) тет. Ашшĕ вилсен ачи сÿсмен витĕр пăхать тет те курать тет: ашшĕ тирне шуйттансем сÿрĕç тет те, пĕр Шуйттанĕ çав тире тăхăнса топăта* выртрĕ тет. Ашшĕ шăммисене таçта пуçтарса карĕç тет. Çак ачи сăмала вĕретет тет хоранпа та, хоранĕпех тытса топăт ăшне йохтарса толтарать тет. Ашшĕ тирне тăхăнса выртнă Шуйттан сиксе тăрать тет те чупкаласа çÿреме пуçларĕ тет (сăмала яриччен пор шăтăка та хĕреç хорса тохнă тет); пÿрт кĕтессинче пĕр пĕчик шăтăк пор тет те, хай Шуйттан çав пÿрт кĕтессине ялт çĕклерĕ тет те тохрĕ карĕ тет. Çав çынран вара Шуйттан чĕлхине вĕренекен полман тет.

## 1456

Турă тĕнчери çынсене кирек мĕн тума та ирĕк панă, хăшĕ ырă туса пурăнма тăрăшнă, усал тăвас тени усал ĕç тунă. Кам та кам усал ĕçсем туса пурăнакансене вилсен вĕсенĕн чунне тертлентерсе пурăнма Шуйттана панă, мĕншĕн тесен Шуйттан тамăкра чи асли пулнă. Вăл вара вĕсене епле кирлĕ çапла асаплантарнă: хăшне вут çинче çунтарма хушнине вут çинче çунтарнă, тĕттĕм çĕрте тытса тăма хушнине тĕттĕм çĕрте тытса тăнă. Шуйттан вăл хăй ку тĕнчере пурăнакан çынсене ялан йĕкĕлтесе çылăха кÿртме тăрăшать. Хăшне-хăшне çын кĕлекти пулса, юлташ пек туйăнса ăна улталама тăрăшать: тума кирлĕ мар ĕçĕсене тума хушать, тусан та сана уншăн нимĕн те пулас çук тесе, Шуйттан пăрăнкаях** çын çумĕнче курăнмасăр çÿрет иккен, апла-капла хăне кирлĕ пулсанах часах çын пулса тăрать тет.

Çав çынни Турă ятне асăнсанах вăл вара çынна курăнми пулса сирĕлет, çавăнпа кирек хăçан та Турра асăнсах тăраççĕ. Ăна асăнмасан Шуйттан вăл çынна темĕн те пĕр усал ĕçсем тутарса çылăха кÿрттерет, кайран вара хăех, çав çынсенĕн чунĕ леш тĕнчене кайсан, турă хушнă пирки хăй ирĕкне илсен, темĕн те тĕрлĕ усал пурнăçсем кăтартса ĕмĕр-ĕмĕрне асаплантарса пурăнать. Шуйттанăн асаплантарса пурăнакан тĕнчине пирĕн чăвашсем тамăк теççĕ. Туррăн ырлăх кăтартса пурăнакан тĕнчине рай теççĕ.

## 1457

Ача-пăча вилекен килте тĕпсакайĕнче Шуйттан пурăнать теççĕ. Ăна тасатма юмăçа чĕнеççĕ. Вăл кăнтăрла икерчĕ пĕçерет, вĕсене кив савăта хурса пĕрене çумне лартать. Каç пулсан, кÿршĕ-аршă шăплансан кил хуçи хĕрарăмĕпе юмăç сакайне анаççĕ, пĕрле шăпăр, хачă, пăтавкка илеççĕ.

* Тупăка.
** Пĕрмаях.

Сакай урайне тирпейлĕн шăлаççĕ, çӳп-çапне пăтавккана сапаççĕ. Юмăç пĕр чарăнми кĕлтăвать: «Тух, Шуйттан, тух!»

Пăтавккаран çӳп-çапа лав çине силлеççĕ. Вара юмăçпа кил хуçи хĕрарăмĕ сакайĕнчен тухаççĕ. Икĕ урай хăмине сăмала сĕрсе çыхăнтараççĕ; сăмала çине пичет çапаççĕ, ун çине юмăç пурăнакан пӳрте ӳкереççĕ. Пичете тĕкĕсемпе тĕкеленине юмăç виçĕ кун иртсен килсе тĕрĕслет.

Кил хуçи лаша кӳлет. Юмăç чĕрçи çине икерчĕсем тултарать те лав çине ларать. Вара çӳп-çапа пĕр-пĕр тарăн вара кайса тăкаççĕ. Килнĕ чух лашине хытă хăвалаççĕ, юмăç ик еннелле икерчĕ пăрахса пырать. Юлашкине пăрахсан савăтне персе çĕмĕрет. Киле таврăнсан юмăçа лайăх хăналаççĕ. Шуйттана хăваласа кăлартăмăр тесе савăнаççĕ. Юмăça укçа тӳлеççĕ.

### 1458

«Пирĕн çурта Шуйттан иленнĕ иккен», — терĕ карчăк. Эпĕ вара унтран: «Шуйттан мĕнле вара у?» — тесе ыйтрăм. «Эп ăна сăнран, пит çывăхран курман. Пĕр-ик метртан курнă. Анчах та темле тăрăшса пăхсан та унăн питне лайăх кураймарăм. Темшĕн йĕркеллĕ курăнмасть. Пире вăл хамăра нимĕн те тумасчĕ. Кайран эпир унран хăрами те пулса çитнĕччĕ. Анчах килтен тухса кайсан пӳрте веçех тустарса пĕтеретчĕ. Эпĕ вара юмăça кайрăм. Юмăç мана: «Алăка сулахай аллупа кантрапа çыхса хур», — терĕ. Эпĕ вăл каланă пек турăм. Пурпĕрех Шуйттан ман çурта кĕчĕ. Вара эпĕ тăвансемпе канашларăм та пӳрте сутса ярас терĕм. Кӳршĕ ял çыннине сутса ятăм. Йӳн хакпах. Лешĕн патне ерсе каймасть пуль терĕм. Вара вĕсем пӳртне ăлăхтарчĕç те, веçех туса пĕтерсен кăнтăрла, 12-ре, тăватă еннинчен те вут хыпса çунма пуçларĕ тет. Çав тери вăйлă çунчĕ тет. Пĕр 10—15 минут хушшинче çунса пĕтрĕ тет. Анчах çав çунакан пӳртрен малтан пулнă хуралтисене нимĕн те тумарĕ тет, вĕсем çунман тет.

«Вара унтанпа Шуйттанран хăтăлтăм», — тет ман карчăк.

Вара эпĕ хăранипе çĕрĕпе çывăраймарăм. Çĕрĕпе Шуйттан çинчен шухăшласа выртрăм.

### 1459

Шуйттан çынна-и е йывăç сумне-и çыпçăнать...

Пĕр çын вăрмана сунара кайнă. Пĕр мулкача тупнă та пенĕ, анчах темиçе хут персе те ӳкереймен: вăл мулкачă пулман, Усал пулнă.

Акă питĕ вăйлă çумăр улăхать, мулкач та куçран çухалать. Сунарçă пĕр юман кутне тăрать. Инçе те мар пĕр хăвăл юман пур тет. Çав хăвăлтан аслатие хирĕç пĕр хура çăмлă, мăйракаллă Шуйттан туха-туха, кутне çапа-çапа йĕкĕлтет тет. Çиçĕм тем пек юман тавра çаврăнать тет, çапах çапаймасть тет. Юман хăвăлĕнче пыл хурчĕ пулнă курăнать: Турă хурта хĕрхеннĕ. Вара сунарçă сăхман тӳммине татса илет те тӳме çине хĕрес хывса пăшал ăшне ярать. Шуйттан хăвăлтан Турра витлеме тухсанах ăна тĕллесе перет. Персенех Шуйттан хытă сасăпа çухăрса çĕре персе анчĕ тет, çĕрте вара ăна вут хыпса илчĕ тет те, çунса кайрĕ тет.

Турă пĕлет çинчен анса хай çынна:

— Спаççипă сана. Эпĕ çак Шуйттана çичĕ çул юнаса пурăнтăм, анчах ниепле те вĕлерейменрĕм, эсĕ вĕлертĕн. Ĕнтĕ çав хăвăлти хурт санăн пултăр, — тенĕ тет.

Çав çын пит пуйнă вара.

### 1460

Кĕске Петюк амăшне тытса пăрахатчĕ. Ануш аппа теттĕмĕрччĕ ăна. Пĕрре çапла çемйисем хăнана кайнă та килте çамрăк хĕр ачана хăварнă. Улюш ашшĕ Кириле папай та юлнă иккен унта. Эпĕр каччă пулнă та-ха ун чухне, пытăм çапла. Пытăм та картиш енчи чÿречинчен тем пысăкăш хура мĕлке кармашса тăнине курах кайрăм. Ку Суккăр Еливан пулас, хăрататам-ха тетĕп. Аллине çаклансан упа пек лутăркаччĕ вара çынна. Вăрттăн пыратăп. Хайхи Суккăр Еливан алăк еннелле хыпашласа пыра пуçларĕ. Эпĕ ун хыçĕнчен пыратăп. Аллăмра темĕн пысăкăш рычак. Алăк умне çитрĕ те кĕлет еннелле сулăнчĕ. «Мĕн шырать ку?» — тетĕп. Унта та тем хыпашласа пырать. Еливанах тетĕп ĕнтĕ. Лупас айнелле каять. «Мĕн мурĕ хыпашласа çÿрет ку?» — тетĕп.

Рычака çĕклерĕм те яра патăм кĕлет патне пĕтĕм вăйăмпа. Те çÿле, те çĕре кайрĕ Еливан, пачах çухалчĕ. Хам та иккĕленсе кайрăм. Пÿрте чупса кĕретĕп те Кириле тетене каласа паратăп.

— Суккăр хвери пулнă пулĕ, — терĕ.

Хунарпа тухса шыратпăр та, йĕрĕ çук. Ануш аппана тытса пăрахаканĕ çавă пулнă иккен. Çавăнтан пĕрре тытса пăрахман хуть.

### 1461

Пĕр уезд пулнă-и, ял-и Атăл хĕрринче. Халăхран укçа пухнă чиркÿ тума. Чиркÿне тутаракансем çурри укçине ĕçсех пĕтернĕ. Чиркÿне туса пĕтерме хăват çитереймен. Çак çур чиркÿ таврашĕнче шуйттансем шывра чÿхенсе çÿренĕ.

Пĕррехинче пĕр Шуйттанĕ ыттисене çапла каланă:

— Атьăр ку чиркĕве хамăр туса пĕтерер. Çав пачăшкасене намăс пултăр, — тесе.

— Атьăр! Атьăр! — тенĕ çамрăк шуйттансем.

Шуйттансен ушкăнĕ пĕчĕкех пулман. Хытă ĕçлеççĕ вĕсем. Все же пĕтереймеççĕ. Кирпĕч çитмест. Тăмне лĕп-леп тукаланă. Чиркĕвĕ чалăш пулать. Шăп çав хĕрес патнелле çитес чух чиркĕвĕ лаштăр-р! ишĕлсе анать. Шуйттанĕсем хăшĕ тăм айне пулаççĕ. Çав вăхăтрах çур çĕр çитсе çывăхри ял автанĕ авăтса янă. Шуйттансем веçех шыва сиксе пĕтнĕ. Чиркĕвĕ халь те пулин Атăл хĕрринче ишĕлсе выртать тет.

## Леш тĕнче тытăмĕ. Масар йăли-йĕрки. Масар пуçĕ

*Çÿлти тĕнчен виçĕ сийĕпе Çут тĕнчен пĕр сийĕ çĕр питĕнчен çÿлелле вырнаçнă. Леш тĕнче пĕтĕмпех çĕрпе шыв айĕнче, унăн хăйĕн тепĕр виçĕ сий пур: Ахрамат, Çĕр мимми тата аяларахра — тĕпсĕр Кахăр. Çав Хăямат çĕршывĕнче çирĕп йĕркепе пурăнаççĕ. Вăл йĕрке çын вилсенех вăя кĕрет: ăна пытаричченех çырма урлă, Чинавье кĕперĕ урлă, хапха витĕр кăлараççĕ. Вара тин вилнĕ çын масар пуçĕ патне çитет. Чун вара хĕрĕх кун тăванĕсенчен уйрăлмасăр пурăнать, унтан вара Турă сучĕ витĕр тухса е Çăтмаха, е Тамăка лекет. Этемĕн каçарми айăпĕсем нумай чухне вăл çип кĕперпе Утрав çине каçнă чухне Тамăка кĕрсе ÿкет.*

*Тамăкра Шуйттанпа Явăл хуçаланаççĕ. Вĕсен ачи-пăчи, тарçи-тĕрçи вара çылăхлисене тамăк хуранне ярса тем тĕрлĕ асап кăтартаççĕ.*

*Айăпĕне сăвапĕ шайлашнисем Çут тĕнчери пекех ĕçлĕ пурăнаççĕ. Çатмаха лекнисем вара турăсемпе ырăсем манерлех ырлăх кураççĕ-мĕн.*

*Леш тĕнчери чунсем Çут тĕнчерен пачах уйрăлса каймаççĕ. Вĕсем çĕр çине Çĕр кăвапи е Пурнăç йывăççĕн хăвăлĕ витĕр тухса кĕреççĕ.*

*Леш тĕнчере пулса курни тата Шуйттанпа Явăл мĕн хăтланни çинчен хывнă аваллăх халапĕсем нумаях мар. Ун вырăнне кайран çуралнă «тет» юмахĕсем йышлă.*

*Çĕнĕ масар пуçласа чикнĕ сынна чăвашсем Масар пуçĕ, тепĕр тĕрлĕ Виле пӳлĕхçи, масарти йĕркесене тытса пыма пултаракан теççĕ. Çĕнĕ масара чи малтан патвар, ялти хисеплĕ сумлă арçынна пытараççĕ.*

## 1462

Масар пуçлăхĕ — вилесен пуçлăхĕ. Вил пуçлăхĕ иккĕмĕш вырăнта. Алпасти виççĕмĕш вырăнта тăрать.

Çын чирлесен çак Турăсене парне параççĕ, çапла калаççĕ:

— Эсир пăхса тӳрлетĕр ку çынна, эпир сире хĕрĕх те пĕр çурта, хĕрĕх те пĕр икерчĕ, хĕрĕх те пĕр çăмарта паратпăр. Эсир пире хĕн парса ан тăрăр!

## 1463

Масар пуçлăхĕ тесе масара кама чăн малтан пытараççĕ, çавна калаççĕ. Асăннă чухне масар пуçлăхне асăнса хăвараççĕ. Камалсăр вилене те яланах асăнса хăвараççĕ. Камалсăр виле тесе тăлăх-турата калаççĕ.

## 1464

Çолаçра кив çăва çине пытарма кăçал чарчĕç, çампа халĕ çĕнĕ çăвасем касса. Çăва çине малтан ачая тата хĕрарăма пытарас мар, çăва пуçĕ мăн çын, арçын пултăр теççĕ. Çăва пуçĕ хаяр ан пултăр тесе унăн пуçне çапса çураççĕ тет. Нимрен те ан аптăратăр тесе кирлĕ япаласене пурне те парса яраççĕ тет. Шĕшлĕ, курка, кашăк.

## 1465

Çăва пуçĕ — Вилĕ Пӳлĕхçи. Çăва пуçĕ вăл — чăн малтан çăва кассан вилсен пытарнă çын чунĕ. Çăва пуçĕ вăл çынсене вĕлерекен, вĕлерсен çын чунĕсене кĕленче ăшне хупса çăва çине илсе каяканĕ.

Вилĕ Пӳлĕхçи çинчен чăвашсем ак çапла калаççĕ. Пĕр çын çăва çумĕнче суха тунă. Ку çын кăнтăрла çитсен канма выртнă. Тем сасăсем илтĕннĕ. Вара çав çын тăрса пăхнă та вĕтĕ халăх, каялла ĕнселлĕскерсем, пĕр шăтăкран тухса кайнине курнă. Çав çын шăтăк патне кайса пăхнă та унта пĕр йĕке хӳре шăтăкĕ курнă. Вăл вара çав шăтăк çине суха калакне хунă.

Кăшт тăхтасан хай вĕтĕ халăх таврăннă. Ку халăх пĕри те хай шăтăка кĕреймен. Вара вĕсем суха тăвакан çынна чĕнсе илсе суха калакне илме йăлăннă. Çын кусенчен:

— Ăçта кайрăр? — тесе ыйтнă.

Вара пĕри каланă:

— Эпир çав ялти çыннăн пĕртен-пĕр хĕр чунне илме кайрăмăр. Унăн чунĕ акă — кĕленче ăшĕнче.

Çак çын чăнахах та кĕленче ăшĕнче тем шăши юс пекскер хускаланса çӳренине курнă. Вара çак çын вăл чуна виçĕ çуллăха илнĕ те кĕленчерен кăларса янă.

Чăнах та вара вилнĕ хĕр, тупăка выртнăскер, чĕрĕлсе тăнă тет.

## 1466

Вилнĕ çынна çуса тупăка вырттарсан ун сулахай аллине тупăлха тыттараççĕ; тупăлха пулмасан — йĕплĕ хулă, вăл пулмасан — хыт-хура е хĕрлĕ эрĕм тыттараççĕ. Вăл патака ак мĕншĕн тыттараççĕ: çынна пытарсан ун патне шуйттансем пырса сырăнаççĕ, вилнĕ çын вара шуйттансене хăй патĕнчен çав тупăлха патакĕпе хăваласа ярать тет.

## 1467

Пӳкле вилнĕ çыннăн ӳчĕ хирте выртсан çумăр çичĕ яла пулмас тет. Çын вилли вăл питĕ шывшăн çунат тет, çавăнпа вăл çумăр киле пуçласан çумăра хирĕç каят тет, çумăр çын виллинчен хăраса урăх çĕрелле пăрăнса каят тет.

## 1468

Çăва çине çимĕке кайса, вилнĕ çынна асăнса ĕçсе-çисе юрламасан, ташламасассăн вăл выртнă чухне те хурлансах выртат теççĕ.

## 1469

Çăва шавланине илтекен çын çултталăкчен вилет тет. Çăва çинче ахаль чух шăпăрт. Çăва шавланă чух калаçнă сасăсем илтĕнеççĕ тет. Кĕреçесемпе чаваççĕ тет. Хăйсем куçа курăнмаççĕ тет.

## 1470

Пĕр старик вутă турттарма кайнă. Масар патĕнчен иртнĕ чух ăна пĕр хĕрарăм, шурă тăхăннăскер, чарса тăратнă. «Мана лартса кай-ха», — тенĕ. Старик калать: «Лаша ывăннă, эпĕ лартса кайма пултараймастăп». Хĕрарăм кăна калать: «Эпĕ ларсан сан лашу хытăрах кайма пуçлать», — тет. Старик лартнă та, вара лаши хытăрах кайма пуçланă.

Пĕр яла çитсен хĕрарăмĕ калать: «Акă эпир çитрĕмĕр», — тет. Лашине кил хушшине кĕртет те хăй пӳрте кĕрсе каять. Старик те ун хыççăн кĕрет. Вĕсем пӳрте кĕрсен чăланта ача макăрнине илтеççĕ. Хĕрарăм чăлана кĕрсе кайсан ача макăрма чарăнать. Çур çĕр тĕлĕнче, хĕрарăмĕ чăлантан тухсан, ачи макăрма пуçлать. Хĕрарăм хăйĕн куççульне саппун аркипе шăла-шăла тухса каять.

Пӳртри çынсем, стариксĕр пуçне, çак хĕрарăма курмаççĕ. Çынсем тула тухсан кил хушшинче лаша тăнине кураççĕ. Кайран пӳрте кĕрсен старике асăрхаççĕ. Старик вĕсене мĕнле пулнине веçех каласа парать. Çак хĕрарăм вилсен унăн ачи юлнă. Вăл ачине çур çĕрле тăрантарса кайнă. Çавăнпа ачи пĕр хушă макăрма чарăннă.

## 1471

Пĕр старик инçе çултан таврăннă тет. Каç пула пуçларĕ тет. Ăна хирĕç пĕр хĕрарăм хыпаланса килет тет. «Тархасшăн, лартса кай, ĕлкĕримастăп, киле хăвăрт çитес пулать», — тет. Пĕр яла çитсен старике лашине тăрат-тарать те: «Айта, эсĕ те кĕрсе тух, хăналанса кай. Çул çинче хырăму та выçрĕ пуль», — терĕ тет. Старик хĕрарăм хыççăн пӳрте кĕрет тет. Пӳрт тулли çын ĕçсе çиеç тет. Старик алăк патĕнчи пукан çине ларать те пăхса ларать. Анчах ăна никам та сĕтел хушшине ларма чĕнмен. Старик сăнама пуçларĕ тет. Паçăрхи шурă тăхăннă хĕрарăм часрах тĕпел кукрине кĕчĕ тет те кăмакинчен уртăнса макăрать тет. Пӳртĕнче çакăнса тăракан сăпкари ачине илсе сиктере-сиктере макăрать тет.

Çур çĕр çитеспе татах хăналанма пуçларĕç тет. Çур çĕр çитсен пурте, пĕтĕм çын, тула тухса кайрĕç тет. Хĕрарăм та йĕре-йĕре тухрĕ тет. Нумай та вăхăт иртмерĕ тет, пĕтĕм çын пӳрте кĕчĕ тет. «Эсĕ кунта паçăрах килсе-и, ма сĕтел хушшине лармастăн?» — тесе вăйпах сĕтел хушшине илсе кĕртсе лартрĕç тет. Вара старик тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ тет. Çав шурă тăхăннă хĕрарăма лартса килнине, хĕрарăм ăна пӳрте илсе кĕнине. Лăпах çав хĕрарăмăн вилни 40 кунне, чăрмавне, асăннă тет. Çав хĕрарăмăн чунĕ хăйĕн чăрмавне килнĕ тет.

## 1472

Пĕр ялта аппăшпе йăмăкĕ пурăннă тет. Пĕррехинче аппăшĕ вилет те каять. Халь йăмăкĕ пĕрремĕш каç пĕтĕм алăк çине хĕрес хурса тухать. Аппăшĕ килет кун патне, пӳрт йĕри-тавра чупать-чупать, ниçтан та кĕрей-мест. «Йăмăк, уç-ха алăкна, ĕлĕк те пĕрле пурăннă, халь те пĕрле пур-нар», — тет. Автансем авăтса ярас те, аппăшĕ каялла каять. Тепĕр каç та çавах пулать. Виççĕмĕш каç та килет аппăшĕ. Пӳрт йĕри-тавра чупать. «Уç-ха, йăмăк, алăкна. Ĕлĕк те пĕрле пурăннă, халь те пĕрле пурăнар», — тет. Унччен те пулмасть, трубаран анать те тăрать: йăмăкĕ унта хĕрес хума манса кайнă иккен. Халь йăмăкне яшка пĕçерме калать. Йăмăкĕ яшка çак-са ярать. «Хăвăртрах эс унта, пирĕн пата каялла çитмелле», — тет аппăшĕ. Яшка пиçсе çитсен аппăшĕ тытать те хурантанах ĕçсе ярать. «Мана валли хăвар-ха, аппа, эпĕ те çимен вĕт», — тет йăмăкĕ. «Чăтан, эпĕ ĕнтĕ 3 кун та 3 каç нимĕн те çимен», — хуравлать аппăшĕ. Халь йăмăкне ура сыртарать те, тухса каяç кусем. Кăшт кайсанах йăмăкĕн ури салтăнса каять. «Тăхта-ха, аппа, ура салтăнса кайрĕ», — тет. Ларса ура сырать. Хăй урине юри япăх сырать. Кайсан-кайсан татах ури салтăнса каять кун. Татах ларса ура сырать. Çан пек* кусем çăва патне çитеççĕ. «Тăхта-ха, аппа, мана малтан кĕме лайăх мар, хăв ертсе кĕр», — тет.

Аппăшĕ кĕрсе каять. Ку çав хушăра çывăхри хурăн çине сиксе ӳкет (çывăхрах виçĕ хурăн ларнă). Аппăшĕ шăтăкран ыттисене ертсе тухать те, пуçлаççĕ кусем хурăна кăшлама. Хурăн таялса каяс чух хĕр тепĕр хурăн çине сиксе ӳкет. Лешсем ку хурăнне кăшлама пуçлаççĕ. Ку хурăнĕ кайса ӳкнĕ чух хĕр юлашки хурăнĕ çине сиксе ӳкет. Лешсем кăна та пуçлаççĕ. Хурăн ӳкнĕ чух шăпах автансем авăтса яраççĕ. Вилесем шăтăка кĕрсе ӳкеççĕ. Çапла хĕр çăлăнать.

---

* Çавăн пек.

## 1473

Пирĕн ялта тата ҫын чирлесен е мĕн те пулин пулсан, выльăх-чĕрлĕх амансан виле тытнă теҫҫĕ. Анчахрах пирĕн килтех ҫапла пулчĕ. Иртнĕ шăмат кун тройца праҫникĕ пулчĕ. Тепĕр кунне ваттисене асăнмалли кун иртрĕ. Ҫав кунне мар, тепĕр кун ирхине анне ĕне сума тухрĕ те, ĕне яхăнне те ямасть тет. Аттепе анне вара ҫакăн пек шутларĕҫ: «Эпир ĕнер пур вилнĕ ватă ҫынсене те асăнтăмăр, ҫав Маиҫе кăна асăнмарăмăр. Ҫавă ĕнер пирĕн пата килсе кайнă пулĕ. «Кунта мана манса кайнă тесе каялла кайрĕ пулĕ», — тесе шутларĕҫ. Вара ҫав вилнĕ Маиҫе асăннă хыҫҫăн ĕне аванах сутарчĕ.

## 1474

Пĕр хĕр ача вилнĕ тет. Ăна урине тапочка кăна тăхăнтарса янă тет. Вăл леш тĕнчери ҫынсемпе хутшăннă. Вĕсемпе калаҫнă. Хăйĕн маҫакăшне курнă. Хĕр ача патне ҫăва ҫине кашни кунах юлташ хĕр ачисем ҫӳренĕ. Пĕрре-хинче вилнĕ хĕр ачи тĕлĕкре юлташне калать:

— Маҫак аннене тăлапа ҫăпата хăйĕн вил тăпри ҫине пырса хума хушрĕ. — тет. — Кайран маҫак хăех тухса илсе тăхăнма пулчĕ, — тет.

Маҫак урине канлĕн ларса сыраcшăн пулнă. Мĕншĕн тесен кинĕ ашшĕ вилсен урине ҫăм атă тăхăнтарса янă. Анчах ку старик виличчен малтан яланах ҫăпатапа ҫӳренĕ пулнă.

Хуть кирек хăҫан та вилнĕ ҫыннăн урине пăхмалла тет, атту кайран хăратать тет.

## 1475

Вилнĕ ҫын час-часах чĕрĕ ҫынсене курăнать; ун ҫинчен пĕр тĕне кĕмен чăваш ак мĕн каласа кăтартать. Пирĕн кĕркунне ваттисене асăннă вăхăтра икерчĕ пĕҫерчĕҫ; пĕҫерсе пĕтерсен мана хамăр хурăнташсене йыхăрма ячĕҫ. Пурте пухăнса ҫитсен алăк патне сĕтел лартрĕҫ те ун ҫине пĕҫернĕ апат-сене хучĕҫ, унтан вара пĕрин хыҫĕнчен пĕри хыва пуҫларĕ. Эпĕ ĕлĕкрех илтнĕччĕ ваттисене асăннă вăхăтра вилнĕ ҫынсем пурте килеҫҫĕ тенине, ҫавăнпа эпĕ ку ҫынсене курасчĕ тесе тĕнĕрен кайса пăхрăм та, вилнĕ ҫынсем пурте килнĕ (тĕнĕрен пăхмасан курăнмасть), вĕсен хушшинче ват-тисем те, ҫамрăккисем те пур, пурте сĕтел хушшине кĕрсе ларнă та ҫисе ларaҫҫĕ. Ҫавна курсан эпĕ тĕлĕнсех кайрăм, кайран вара хам мĕн курнине аттепе аннене каласа кăтартрăм, вĕсем мана каларĕҫ: вилнĕ ҫынсене хывнă вăхăтра пурте масар ҫинчен яла килеҫҫĕ, анчах эпир вĕсене куҫпа кур-мастпăр, мĕншĕн тесен вĕсенĕн ӳчĕсем ҫĕрсе пĕтнĕ, чунĕсем анчах ҫӳреҫҫĕ, вĕсен леш тĕнчере ҫимелли ҫук, эпир кунта хывсан тутă вĕсем, эпир хывмасан выҫах ҫӳреҫҫĕ терĕҫ. Чăвашсем пурте ҫапла ĕненеҫҫĕ.

## 1476

Пирĕн кашни ҫулах ҫимĕк умĕнхи каҫ вилнисене асăнса мунча хутса кĕреҫҫĕ. Ҫапла эпир те мунча хутнăччĕ. Пурте кĕрсе тухнăччĕ ĕнтĕ. Ман ывăлăн кипкисем мунчара юлнă. Ҫимĕк каҫĕ ача кипкисене мунчара хăвар-ма юрамасть тет. Мунчара вара виҫĕ ушкăн ҫăвăнса тухсан мунчана вил-нисем ҫăвăнма килеҫҫĕ тет. Ҫапла, тĕттĕмленсен эпĕ ача кипкисене илме

кайрăм, пахчапа çапла юрла-юрла пыратăп ĕнтĕ. Мунча патне çитсен алкине уçса ятăм та — мунча алкумĕнче çап-çутă, электричество лампи çутнă пекех. Пирĕн ун чухне мунчара краççын лампи çеçчĕ, мунчи те хура мунча пулнă. Эпĕ алăка каялла шалт çеç хупса хутăм. Хам хăрама та пĕлместĕп-ха, ара, Турра ĕненместĕп те. Тепĕр хут алăка уçса пăхрăм та, шалта сĕм тĕттĕм.

Эпĕ кĕрсе хăвăрт ача кипкисене пуçтарса тухрăм та килелле утрăм. Пахчапа пынă чухне вара ваттисем каланине аса илтĕм те хăрасах кайрăм. Мунчана вилнисем кĕме килнĕ-мĕн.

## 1477

Пĕр çын темшĕн çилленсе пĕчченех килне юлнă, пĕччен юлсан тăрăх сак çине тĕпеле çывăрма выртнă, пĕччен хăраса выртнă, хайхи çын çывăрса та кайман, пĕр темлескер алăк патĕнчи пĕчĕк, сĕрĕм тухмалли е кушак тухмалли чӳречерен аллине чиксе чăсса ярса çур пӳрт таран хыпашлама тапратрĕ тет, хыпаласан каяллах аллине тулалла туртса илчĕ тет: «Ку пӳртре çын сывлăш пур пекех илтĕнет, тепре алла ярса хыпашласа пăхам-ха», — тесе каларĕ тет.

Хайхи темскерлескер каяллах пĕчĕк чӳречерен аллине чиксе, çак çын выртакан сак патне вăрăм аллипе хыпалама тапратрĕ тет. «Кунта çын пур-иç», — тесе алăка уçса кĕчĕ тет те ку çын патне пымасăр тӳрех тĕпеле кĕрсе кайса, кăмакари типме хунă хăйăсене аркатса урайне пăрахма тапратрĕ тет. Вара пĕччен юлнă çын алăкне хупмасăрах тухса тарнă. Леш Усалĕ, хăйă пăрахса тăнипе, çын тухса тарнине сисмен. Çак çын ыттисем асăннă пӳрте çитрĕ те, пурте: «Сана мĕн пулчĕ, шурса кайнă эс?» — тенĕ. Лешĕ: «Çапла куртăм, çапла хăратрĕ», — тенĕ. Каллех пурте карарĕç: «Кайса пăхар-ха виççĕн-тăваттăн, мĕн пур унта?» Килчĕçĕ, пӳрт алăкĕ уçă, хăйăсем урайĕнче саланса выртаççĕ, урăх нимĕн те çук, пурте хăраса каялла таврăнчĕç тет.

Вăл каç пĕр çынĕ алра хăйăпа кăмрăк илсе çӳренĕ, вара хăраман. Тата алăксене те питĕрсе кайман, сĕтел çинче пушă хăварман, сăра, çӳхӳ, яшка, аш, курка, чашăк лартса хăварнă, вилнисем кĕрсен хуçисĕрех ĕçсе-çисе кайччăр тенĕ.

## 1478

Пĕррехинче ман пичче вăййа кайнă пулнă. Ăна хирĕç вил туйисем пыы-раççĕ тет. Малта пыраканнисем хăрамалла вă-ă-ăрăм. Ун хыççăнхисем пĕчĕкленсе-пĕчĕкленсе пыраççĕ тет. Самăй кайри ретрисем вара çĕртен кăшт кăна уйрăлса пыраççĕ тет. Хăйсем вара ним тĕлли-паллисĕр нăрăлтатаççĕ, юрлаççĕ тет. Пĕрисен сассисем хăрушла кулăш тет, теприсем чăнкăлтатаççĕ анчах тет çӳхе сассисемпеле: чан! чан! чан! Пĕри юрра анчах юрлама пуçăнать тет, тепри вĕçлет тет, тата тепри варринчен юрлать тет, теприсем темскер ĕнерлеççĕ тет, нимĕн те ăнланма май çук тет. Пĕчĕкки хирĕçех пырать тет. Пĕррех тапса ятăм тет ăна, шăмă шап! кайса ӳкрĕ тет. Пăхса тăрап: ни кулма, ни хăрама пĕлместĕп тет; лешĕ вара чалт! сиксе тăчĕ тет те тарчĕ тет. Вара хамăр юлташпа мĕн курни çинчен вăтă çынна каласа патăмăр тет. Акă мĕнле хурав панă вĕсене ваттисем: «Вил туйисем вилнĕ çыннăн чунне илме çула тухнă пуль. Ялта кам та пулин вилнĕ пуль», — тенĕ. Тепĕр кунне ирех Верук вилни çинчен хыпар сарăлчĕ. Акă мĕн тума килнĕ вăл туйисем.

### 1479

Камалсăр тесе йăх-тĕп хăвармасăр вилнĕ вилесене каланă. Кушкăра ĕлĕкех пĕр Сипет ятлă çын пулнă. Çав Сипетĕн çемйи пĕтĕмпе вилсе пĕтнĕ, вĕсене пурне те пĕр çĕре ял масарĕнчен уйрăм пытарнă. Вĕсене пытарнă вырăна «Сипет тӳпи» тенĕ, халĕ те вăл вырăна çапла калаççĕ. Вĕсем мĕнле вилĕмпе вилнине никам та пĕлмест, вĕсен хăйсен хыçĕнчен вĕсене асăнса хывакан та йăх-тĕп юлман. Çав Сипет тӳпинчен ял-йышсем хăраса тăнă, çавăнта выртакан «камалсăр вилесене» хывмасан çумăр çумасть тенĕ. Çавăнпа çав вилесем çине ял-йышсем кая-кая хывнă. Унтан учук тепĕр кунĕ учукра чӳклеме пуснă ĕне тирĕ суттипе илнĕ эрехрен пĕрер штух (штоф) кама та пулин парса çав вилесене хывма янă. Халĕ ĕнтĕ çав Сипет тӳпине пĕчĕкçĕн-пĕчĕкçĕн сухаласа пĕтереççĕ: ĕнтĕ çерем аранçă кăна юлнă.

Камалсăр вилесем çинчен чăваш ялĕсенче пур çĕрте те асăнаççĕ. Вĕсене хывнă теççĕ.

### 1480

Пĕр çын патне çывăрнă чух вилнĕ çын килсе тăратнă тет. Куллен килет тет. «Ыран ан кил», — тесе каласан та килсе çитет тет.

Пĕррехинче кăна (вилене) çын килме хушса ярать, алапа шыв илсе килме хушать. Паллах, алапа шыв илсе килме çук. Вара урăх виле килмерĕ тет.

## Аялти тĕнче йăли-йĕрки. Çылăх. Сут. Тамăк. Çăтмах

*Леш тĕнче çинчен калакан халапсем çулсерен сахалланса пынă. XIX—XX ĕмĕр пуçламăшĕнче çырса илнĕ халап-хайлара чăвашсен авалхи тĕнчекурăмĕ аванах курăнса тăрать. Кунта вара этем хăй ĕмĕрĕ ытахаль иртменнине, тăхăмĕсем валли тĕрĕс ĕçпе усăллă ĕç туса хăварнине ĕненни паха.*

*Леш тĕнчере чăваш çĕр çинчи пекех пурăнни çинчен калани — чăваш тĕнĕпе тĕшмĕшĕн хăйне евĕрлĕ палли. Чăваш аптраманлăхĕ çакăнта палăрса тăрать.*

### 1481

Тĕнче тытакан виççĕн пулнă тет. Пĕри Аслă Турă, тепри Шуйттан, виççĕмĕшĕ Эсрел тет. Çаксене пĕр тĕрлĕ çут тĕнче йăлăхтарса çитерчĕ тет. Шуйттанпа Эсрел ĕççĕр аптраса çитнипе Турă патне кайрĕç тет те:

— Тавай тĕнче тăвар? — ыйтаççĕ тет.

— Мĕнле? — тет Турă.

— Мĕн мĕнле, эпĕ çут тĕнчере пурăнакансене астарса, ашкăнтарса çылăха кĕртекенĕ пулам, — тет Шуйттанĕ.

— Эпĕ пусса тепĕр тĕнчене илсе каяканĕ пулам, — тет Эсрелĕ.

Турă кунпа килĕшрĕ тет. Çакăнтан вара икĕ тĕнче тет. Пĕри — çут тĕнче, тепри — леш тĕнче тет.

### 1482

Леш тĕнчере этем пурнăçа Çăтмахри ырлăхра е тамăкри хурлăхра ирттерет. Чăвашсен Çăтмахĕ — ешĕл пахча евĕрлĕ, унта Турă, Турă Амăшĕ, пирĕштисем тата таса хăватсем çӳреççĕ. Çăтмах вăл пахча е пахча пек

вырăн, ун йĕри-тавра каçса кĕме çук хӳме, вăл Тамăк çинче çӳлте пулать. Тĕрĕс пурăннă çын чунĕ Çăтмаха лекет. Унта ăна темиçе хут сут витĕр тухсан кăна яраççĕ. Çăтмахра пурте çителĕклĕ, тулăх, хуйхăсăр пурнăç унта.

Çăтмах тата чи çӳллĕ те чăнкă ту çинче теççĕ, ун çине хăйĕн чĕрнисене касмассерен сапаламасăр купана пухса пынă çын кăна хăпарса çитме пултарать теççĕ.

Çын вилсен хăйпе пĕрле пухса пынă чĕрне касăкĕсене илсе каять. Çак касăксем алăпа ура пӳрнисем çине çыпăçса лараççĕ, вара чĕрнесем пысăк та тĕреклĕ пулса тăраççĕ. Этем вĕсемпе ту çине çăмăллăнах чакаланса хăпарма, çапла вара Çăтмаха лекме пултарать. Пурăннă чухне чĕрнене касмассерен унта-кунта çăмăлттайла сапаласа тăкнă çын вилсен хăй чĕрнисене шыраса тупаймасть те Çăтмаха лекесси пулмасть.

Этем чунĕ ӳт-тирпе пĕрле пулнă пек ăнланать чăваш. Тĕслĕхрен, чун ӳтрен тухса кайнă чухне унăн чĕрнеллĕ пӳрнесем пулаççĕ, апла пулсан — чунăн ӳчĕ те пур. Анчах та вăл пурнăçра этеме курăнакан йышши ӳт-тир мар. Вăл çынна курăнмасть. Чун ӳчĕ этеме ĕмĕлке пек кăна туйăнма пултарать.

## 1483

Чăвашсен хăрушă тĕшмĕш пур. Вăл ача çуратмасăр вилнĕ хĕрарăм леш тĕнчере çĕлен çăварне лекет. Çĕленсем унăн кăкăрне ĕмеççĕ тенипе çыхăннă.

## 1484

Хусах каччă е хĕр пуççăн вилни питĕ пысăк инкек шутланнă. Хусах пуççăн вилнисем леш тĕнчере Эсрел хĕрне качча илмелле, хĕр пуççăн вилнисен Эсрелне хăйне качча тухмалла теççĕ.

Хĕр тасалăхĕпех вилнĕ çын леш тĕнчере Эсрел арăмĕ пулса тăрсан унăн кĕпи-йĕме çуса тăмалла пулать...

Качча каймасăрах тасалăха çухатнă хĕрĕн кăкăрне леш тĕнчере çĕленсем сăхса пурăнаççĕ. Унта вăл качча тухса ача çуратсан кăна уйрăлса каяççĕ. Кашни хĕрĕн вăхăтра качча тухмалла тата ача çуратмалла. Леш тĕнчере хĕр хăйĕн тасалăхне малтан кампа çухатнă, çав çыннăн арăмĕ пулса тăрать, çавăнпа кирек хăш хĕрĕн те хăйĕн чысне качча юратса тухас тенĕ çынпа кăна çухатма юрать...

## 1485

Этем вилсен те пурнăç пĕтмест. Леш тĕнчере этем кунта пурăннă йĕркепех малалла пурăнать. Пуянни вилсен те пуянах юлать, куштан леш тĕнчере те куштанах. Начар шăпа унта та вăрăсемпе чухăнсем çине ӳкет. Вăрăсен леш тĕнчере мĕн вăрланине хуçисене таврса памалла пулать, таварса париччен вĕсен вĕсем патĕнче тарçăра чупма тивет. Чухăнсем леш тĕнчере те тертпех асапланса пурăнаççĕ...

## 1486

Хăшĕсем каланă тăрăх, леш тĕнчере упăшкисем хăйсен пĕтĕм арăмĕсене шыраса тупма пултараççĕ, хусахсем авланма, хĕрсемпе тăлăх арăмсем качча тухма пултараççĕ. Теприсем каланă тăрăх, вилнисен патшалăхĕнче масар пуçĕ хуçаланать, вилнисен шăпи ун сăмахĕнчен килет.

## 1487

Хăшĕсем этемĕн леш тĕнчери пурнăçне икĕ тĕрлĕ кураççĕ: таса çынсем Тулăх çĕре — Чемкерте каяççĕ, унта тăванĕсене, выльăх-чĕрлĕхне, кил-çуртне ку пурнăçринчен те чаплăрах лару-тăрура тĕл пулаççĕ, усаллисем вара сивĕ те пулăхсăр хирсем тăрăх ўтсĕр шăмăсем пек çапкаланса çўреççĕ.

## 1488

Чăвашсен çăтмахĕ — ăшă енче, мамăклă çĕр çинче. Унта пурте пур: выльăх-чĕрлĕх, тумтир, апат-çимĕç, укçа-тенкĕ. Ĕçсĕр савăнса пурăнмалли вырăн вăл. Çăтмах пĕлĕт çинче хĕвел анăç енче вырнаçнă. Унта чăваш ялĕнчи пек çуртсенче çылăхсăр çынсен чунĕсем савăнса пурăнаççĕ.

* * *

Чăвашсем çыннăн чунĕ тухса кайсан леш çанталăка каять тенĕ. Унта çўреме çутă пултăр тесе çĕре хăй виличчен укçа хураççĕ тет, вара çавă çынна вилсен çутă кăтартса çўрет тенĕ.

# Тамăк

*Тамăк — Леш тĕнчери çĕршыв. Тамăк сичĕ е тăхăр çĕршывран тăрать. Çĕр çинче мĕнрен çылăха кĕнĕ, вилнĕ çын çавна хирĕç ĕç тумалли çĕршыва лекет, çавна ĕçлесе çылăхне каçарттарать. Тамăк — тĕттĕм патшалăх. Унта тăхăр хуран. Çылăхлă çынсен чунĕсене çак хурансене ярса сăмалапа вĕретсе асаплантараççĕ. Вилнĕ çын чунĕ çылăх каçиччен асапланать. Унта тамăк патши, тамăк усалĕсем, тамăк шуйттанĕсем пурăнаççĕ.*

## 1489

Пĕр пит эрек ĕçекен çын пулнă тет. Кунăн вилмелли вăхăт çитнĕ тет. Вилĕм пынă тет те: «Санăн вилмелле-çке», — тенĕ тет. Хайхи çын пĕтĕм куляна пуçланă тет: «Ах тур-тур. Эп пит çылăхлă-ĕçке! Эрек ĕçсе çылăха кĕрсе пурăнтăм», — тенĕ тет. Кăна хай вилĕм: «Çăвăн тăпрапа. Çĕр пурне те тасатать», — тенĕ тет. Хай тăпрапа çăвăннă тет те тап-таса пулса тăнă тет, пĕр çылăхĕ те юлман тет. Çавăнтах тепĕр çын патне кайнă тет Вилĕм. Çынни лайăх çынах пулнă тет. Эрек ĕçекен çын пулман тет. «Санăн вилмелле-çке», — тенĕ тет кăна та Вилĕм. «Пулин. Эп вилĕмрен хăрамасп, — тенĕ тет. Çав çын пек эп эрек ĕçсе çўреместĕп, манăн çылăх нумай мар», — тенĕ тет. Çавăншăн вара çын эрек ĕçекен çын вырăнне каймалла пулнă тет, эрек ĕçекен çынни лайăх вырăна каймалла пулнă тет. Çапла чĕререн ўкĕнсен кăшт ўкĕнни те çăлма пултарать тенĕ ваттисем.

## 1490

Çăтмаха ĕлĕкхи чăвашсем хитре сад тенĕ. Унта тĕрлĕ çимĕç йывăçĕсем пулмалла тенĕ, тутлă шывсем пулмалла тенĕ. Тамăка кайнисене шăршлă шыв пулмалла, вутра çунмалла вĕсем тенĕ.

Ĕлĕк пĕри пурăннă пурнăçĕнче никама та нимĕн те паман тет. Ку тĕлĕк курнă тет. Вилнĕ пек тет те тамăка кайнă пек тет. Ытти тамăкри çынсене хăйсем тĕнчере мĕнле япала çынна панă, çавсене ангелсем пырса тыттараççĕ тет те, çыннисем çав япаласенчен тытса тухаççĕ тет. Кунăн тытмалли нимĕн те çук тет, тамăкран тухма та май çук тет. Ĕмĕрĕнче çынна пĕр сухан çулçи панă тет. Çав сухан çулçине пырса тытать тет тамăкран тухма, сухан çулçи кăна чăтаймасть тет, татăлса каять тет. Тамăкран тухаймасп тесе ку макăра пуçларĕ пек тет. Макăрнипех вăранса кайнă тет. Çавăнтан кайран вара çав этем çынсене пулăша пуçланă тет.

Çынна парне пани пит аван тет. Качча каякан хĕрсем мĕн чуль нумай парне панă, çавăн чуль лайăх тет. Тамăка кайсан тамăкран çав парнесем тăрăх тытса тухмалла тенĕ ваттисем.

### 1491

Чăваш ĕненĕвĕпе, вилнĕ çын шурă тумлă пĕчĕк ват çын е хура тумлă вăрăм çын пулса тăван киле хăйне асăнниччен ех килсе хăратать. Çĕр çинче пурăннă чухне юратнă çынсем патне вилнĕ упăшки арăмĕ патне е вилнĕ арăмĕ упăшки патне ытларах килсе çӳрет. Вилнисене тăрантармасан вĕсем чир-чĕр ярать тесе калаççĕ. Камăн та пулин çурăм е алă, е татах мĕн те пулин урăххи ыратма пуçласан ăна вилнĕ çын юратса тытнă, çимĕç ыйтнă теççĕ. Чухласа илекенĕ вилнине апат кайса хывать. Кашни эрне кунах вилнисене хывма çăмарта, икерчĕ пĕçереççĕ. Вĕсене икĕ савăтпа лартаççĕ, каçхине вара кил картишĕнчи пĕр-пĕр кĕтесе хураççĕ, ваттисем килсе апатланччăр теççĕ. Пĕр-пĕр кӳрентернĕ çын патне виле килсе курăнсан та çаплах тăваççĕ.

Вилнĕ çынна асăниччен Турă ăна хăй патне йышăнмасть. Вăл ăна Пирĕштие пăхса тăма хушать. Пирĕшти ăна унччен вилнĕ тăванĕсем патне илсе çӳрет. Чăвашсем çынна ялан тенĕ пекех хăйĕн тăванĕ-хурăнташĕсемпе пĕр вырăна пытараççĕ.

Леш тĕнчере вилнĕ çын çĕр çинчи пекех пурăнать. Мĕнле тумпа пытарнă, çав тумпах çӳрет, çĕр çинче ĕçленĕ ĕçех тăвать: сухалать, акать, çулать, выльăх-чĕрлĕх пăхать тата ыт.те. Çавăнпа çăпата ăстине шĕшлĕ, ыттисене хăйсен ĕç хатĕрĕсене тупăка хурса яраççĕ.

Ĕçсе е çакăнса вилнисене çĕр йышăнмасть теççĕ, çавăнпа вĕсем çĕрлесерен урамсемпе çулсем тăрăх çӳреççĕ, иртен-çӳрене хăратаççĕ. Вилĕсем автан авăтиччен кăна урамра çӳреççĕ.

Ĕçсе е пăвăнса вилнисем çумăр çунă чухне шăтăкран тухса пĕлĕтсене хăваласа яраççĕ.

### 1492

Вилнĕ çынсем çĕрле автан авăтиччен çӳреççĕ тет. Хăшĕ хăйсен килçуртне сыхлаççĕ, хăшĕ хăйсен тăванĕсене автанччен хăратса çӳреççĕ тет. Çывăрнă çĕрте чĕпĕтеççĕ тет, çавăнпа ӳт çинче пăнчă-пăнчă кăвакарса тухсан вилнĕ çын чĕпĕтнĕ теççĕ. Вилнĕ çынсем курăнмаççĕ, ура сасси çеç илтĕнет.

Ĕлĕк пĕр масар çинче пӳрт пулнă тет. Пĕрре çав пӳрте таркăн салтак пырса кĕрет тет те кашта çине улăхса ларать тет. Салтак хыçĕнчен вилнĕ çынсем кĕшĕлтетсе кĕреççĕ те таркăна шырама тытăнаççĕ тет, ниепле те

тупаймаççĕ тет. «Çакăнтах кĕчĕ-çке, ăçта кайрĕ-ши?» — тесе калаçаççĕ тет. Хăйсем çӳлелле пăхаймаççĕ тет, ĕнсисем çук тет. Ăна вилнĕ чух Эсрел çавапа каснă, çавăнпа çын çӳлелле пăхайман. Автан авăтиччен вилнĕ çынсем таркăна тупаймарĕç тет. Автан авăтса ярсан пурте каялла кĕшĕлтетсе тухса кайрĕç тет.

## 1493

Кирек хăш вилнĕ çыннăн чунне те икĕ Пирĕшти кĕтсе йĕреççĕ. Чун ӳтрен тухнине кĕтсе илсен вĕсем пĕлĕт çине вĕçсе каяççĕ. Вара Явăлпа пĕрле таврăнаççĕ те пурăннă чухне этем çĕр çинче камшăн ытларах тăрăшни пирки тав кăлараççĕ. Тав тĕрĕслĕхе тӳрре тухсан этем чунĕ пирĕштисене лекет те çăтмаха каять е явăл аллине лексе çĕр айĕнчи тăвăр вырăна çакланать. Çĕр айĕнчи тĕттĕмре шыв упранать. Шывра пысăк хуран пур, çав хуранта çылăхлă этем чунĕ ытти чунсемпе пĕрле вĕресе тăрать.

Теприсем тата тамăк вăл тĕпсĕр тарăн шăтăк теççĕ. Çылăхлисем унта хăйсемех лекеççĕ. Çын вилсен ăна шăтăк урлă сиксе каçма хистеççĕ. Айăплă пулсан шăтăк урлă сиксе каçаймасть те шăтăка ӳксе ĕмĕрĕпех вутра çунать; çылăхĕсем сахал пулсан тамăк урлă сиксе каçать те çăтмаха лекет.

Тамăкри асапсем ĕмĕрлĕх мар, анчах вĕсем мĕн чухлĕ тăсăласси çĕр çинче паллă мар. Мĕн чухлĕ те пулин вăхăт иртсен хуранти шыв вĕресе пĕтет, асап курнă чунсем хуран çумне çыпăçса лараççĕ. Вара çĕр айне пирĕштисем анаççĕ те чунсене хуран çумĕнчен хырса илеççĕ, малтанхи пекех туса хураççĕ. Чунсем хăйсен йĕркеллĕ тĕсне йышăнсан вара малашне ĕмĕрĕпех пурăнаççĕ. Анчах чунсем хуранта вĕренĕ хыççăн çĕр çинче пурăннă чухнехинчен пĕчĕкленсе юлаççĕ.

Ваттисем çимĕк тĕлĕнче тата ытти хăш-пĕр вăхăтсенче çĕр çине тухса çӳреççĕ, уй-хирте е ытти вырăнсенче пурăнаççĕ. Çавна астăвакан ачасем каçхине кĕтӳ кĕтнĕ чухне тунката çине ларас умĕн ăна шак-шак шаккаса сас кăлараççĕ. Ку вăл тунката çинче ларакан ваттин чунне кайма ыйтни пулать.

## 1494

Тамăк вăл çăтмах айĕнче, çĕр тĕпĕнче выртать. Çĕр тĕпне каймалла пултăрах! тени тамăка лекме суннине пĕлтерет.

Тамăк — асаплану вырăнĕ. Чăваш тамăка çапла курать: сарлака тӳрем вырăн варринче вĕресе тăракан шывлă пысăк хуран. Хуранта çылăха кĕнисем пиçеççĕ. Хуран тавра юпасем лартнă, вĕсем урлă каштасем хунă. Çав каштасем çинче çылăхлисем кам пуçăн, кам кутăн çакăнса тăраççĕ, теприне чĕлхинчен çакса янă тата ытти те. Пурăннă чухне урисене ирĕке янă тата нумай çылăх тунă çынна кутăн çакаççĕ. Чĕлхерен çакни çылăхне те чĕлхине пулах туса тултарнă.

Тамăкра тата вĕри çатма пур. Кам чĕлхепе пакăлтатса çылăха нумай кĕнĕ, вĕсене Тамăкра вĕри çатма çулаттараççĕ.

Пит çылăхлă çынна вилсен çуна туса çӳреççĕ. Унăн чунĕн вара леш тĕнчере явăла турттарса çӳреме тивет.

Леш тĕнчере пач тĕттĕм вырăн пур. Вăл çăтмахпа тамăк хушшинче выртать. Çав сĕм тĕттĕм çĕрте ят хуриччен вилнĕ пĕчĕк ачасен чунĕсем пулаççĕ.

## 1495

Пĕр чăваш яленче пĕр тăлăх арăм пурăннă. Унăн пĕртен-пĕр хĕрĕ пулнă. Хĕрĕ пĕве ҫитсен сасартăк чирлесе вилнĕ. Амăшĕ хĕрĕ вилсен нумай макăрнă, хĕрне пĕрмай асра тытнă. Пĕрре вăл тĕлĕкре леш тĕнчене курнă, хăй хĕрĕн чунне те курнă.

Чи малтан вăл юлашки кунсенче вилнĕ этемсен чунĕсене курнă. Ҫав чунсене пĕр ҫĕре, хăшне хăш вырăна вырнаҫтармаллине сăнакан ҫĕре илсе пынă-мĕн. Ҫав вырăнта ҫӳле, ҫăтмаха, хăпармалли тата аяла, тамăка, анмалли ҫул выртать-мĕн. Ҫулне яп-яка тимĕртен тунă тата вăл пит чăнкă-мĕн. Ӳтрен уйрăлнă чунсене пирĕштисем ҫав тимĕр ҫулпа ҫӳле хăпарма хушаҫҫĕ-мĕн. Пурнăҫа тӳрĕ те сăваплă пурăнса ирттернĕ таса этемĕн чунне тимĕр ҫулпа ҫӳле хăпарма хушаҫҫĕ-мĕн. Пурнăҫа тӳрĕ те сăваплă пурăнса ирттернĕ таса этемĕн чунĕ тимĕр ҫулпа ҫăмăллăн ҫӳлелле хăпарса каять те ҫулĕн вĕҫне ҫитсе ҫут тĕнчене ҫăтмаха кĕрет. Ҫылăхлă ҫыннăн чунне ҫӳле хăпарма пит йывăр: ăна ҫылăхсем хăпарма чăрмантараҫҫĕ тата аялалла туртаҫҫĕ. Ҫылăхлă ҫыннăн чунĕ хăпарса ҫăтмах патне ҫитеймест: вăл шыва анать те тĕпнелле анса кайса сăнă ҫине тăрăнать. Сăнă ҫинчен ăна Шуйттан тарҫисем тытса илеҫҫĕ те тамăк хуранĕ патне сĕтĕрсе илсе каяҫҫĕ. Хуранĕ патне ҫитсен чуна йăтаҫҫĕ те хуран ăшне яраҫҫĕ. Тамăк хуранĕ пит пысăк-мĕн. Унăн ăшĕнче пĕрмай ҫу вĕрет, ҫăвĕ пит вĕри. Хуранăн айне Шуйттанĕн тарҫисем пĕрмаях вут хураҫҫĕ, ҫав вут сӳнмест, хуранта ҫылăхлă ҫынсен чунĕсем пĕрмаях вĕресе ҫаврăнаҫҫĕ. Хуран ҫывăхĕнче кăшкăрупа ҫухăру хăлхана ҫураҫҫĕ. Вăл ĕнтĕ асапланакан чунсем кăшкăрнипе ҫухăрни пулнă. Тĕлĕк куракан чăваш арăмĕ тамăк хуранне лайăх курнă. Хуран ăшĕнче вĕрекен ҫупа пĕрле ҫаврăнакан чунсем мĕнрен те пулин тытса хурантан тухма хăтланаҫҫĕ. Вĕсен тытмаллисем пурăннă вăхăтра тунă ырă ĕҫсем пулса тăраҫҫĕ-мĕн. Ырă ĕҫĕ ҫителĕклĕ пулсан чун унран тытса хурантан тухать те, ăна Пирĕшти хăйĕн аллине илет. Тĕлĕк куракан хĕрарăм тамăк хуранĕнче хăй пĕлекен пĕр арăмăн чунне те курнă. Ҫав арăм пурăннă чух ыйткалакана пĕр сухан панă пулнă. Ҫав сухан тамăк хуранĕнче ҫав арăмăн аллине ҫакланнă та арăма хурантан тухма пулăшнă. Арăм сухана ярса тытнă та хурантан тухма хăтланнă, анчах та суханăн хӳри пĕрре ҫех пулнипе вăл чăтайман, татăлнă, арăм каллех хурана ӳкнĕ. Тĕлĕк куракан арăмăн чĕри тамăкри этемсем ҫав тери асапланнине курнипе хăраса пăчăртансах ларнă. Вăл арăм хăйĕн вилнĕ хĕрĕ ăҫтине пĕлесшĕн пулнă.

Хĕрне вăл, паллах, тамăк хуранĕнче курман: хĕрĕ, ҫамрăкла вилнĕскер, тамăкра пулма та пултарайман. Хĕрĕн амăшĕ Пирĕшти патне пынă та: «Ăҫта-ши манăн хĕрĕм, пĕлесчĕ манăн», — тенĕ. Пирĕшти пĕлĕт чаршавне уҫнă та арăма: «Пăх ҫӳлелле», — тенĕ. Арăм ҫӳлелле пăхнă та, унăн чунĕ хавасланса, савăнса кайнă. Ҫӳлте ҫап-ҫутă, савăнăҫлă тĕнче курăннă: унта илемлĕ сад пахчи, ытармалла мар илемлĕ курăк-чечексем ӳснĕ, тăптăрă шывсем юхнă, тĕрлĕ кайăксем хитре юррисене юрланă, тĕрлĕ чĕр чунсем пĕр-пĕринчен хăрамасăр ҫӳренĕ. Ҫав илемлĕ сад пахчинче арăмăн хĕрĕ ҫӳрет-мĕн; унăн хӳттинче пайтах чăх, хур, кăвакал. Вăл ҫав кайăксене пăхать-мĕн. Хĕрĕ аялалла пăхрĕ те амăшне курчĕ, курчĕ те савăнчĕ: «Анне, эсĕ маншăн ан кулян: мана кунта питĕ лайăх, эпĕ телейлĕ», — терĕ. Амăшĕ каларĕ: «Сана куртăм та, хĕрĕм, манăн та кăмăл тулчĕ ĕнтĕ», — терĕ.

Ҫапла хĕрне курнă хыҫҫăн арăм ыйхинчен вăраннă, кайран ҫынсене тĕлĕкре мĕн курнине каласа кăтартнă.

## 1496

Ку ĕç ĕлĕк-авал пулса иртнĕ. Пĕр ялта пĕр хĕр ача качча каймасăр ача çуратнă. Ку хĕр ачи çине пăхнă та вĕлерме пит шелленĕ. Вара вăл ачине çийĕнчи юпкине чĕркенĕ те клатавуйне (чăлан е саман кирпĕчрен хунă кĕлет) кӳртсе вырттарнă. Малтанлăха хăй те унтах юлнă. Виçĕ эрне иртсен тин вăл çын куçĕ умне курăннă.

Çынсем ку хĕре ним вырăнне те хуман: унтан тĕрлĕрен майсемпе мăшкăлласа кулнă. Тĕрĕсрех каласан, ăна çĕрти çӳпĕ вырăнне те хуман. Апла пулин те ку хĕр вĕсене хирĕç ним сăмах чĕнмен, никампа та вăрçăнман, хирĕçмен, пур йывăрлăха ăшĕнче тӳссе ирттернĕ. Яланах: «Эй, Турă, тӳсĕмлĕх пар. Тӳсекене тӳшĕ ашĕ лекнĕ, тӳсеймене карăк ашĕ те лекмен», — тенĕ. Хăй çаплах ачине вăйĕ çитнĕ таран çынсем пекех усрама тăрăшнă. Ӳссе çитсен ачи салтака лекнĕ те унта пысăк начальнике тухнă. Хăй те çынсем пекех ватăлса çитсе вилнĕ (ватлăх кунĕсенче ăна ачи хăй патне илнĕ тет).

Çын хăй ĕмĕрĕнче сахал мар çылăх тăвать. Ку хĕрĕн çылăхĕсем вара кам унтан кулнă çынсем çине куçса пынă тет. «Турă сучĕ» вара ăна нумай тӳссе иртттернĕшĕн рая каймалла тунă. Унăн чунĕ ангел пулса пĕлĕте вĕçсе хăпарнă.

## 1497

Çынсем вилсен вĕсен чунĕсем çăтмаха тата тамăка лекеç. Вилнĕ-вилмен çыннăн чунĕ пĕлĕте Турă патне хĕрĕх те пĕр конлăх суда каять. Торă çав çынна суд тăвать. Çылăхсăр полсан ăна тӳрех çăтмаха ярать, çылăхлă пулсан вара — тамăка.

Çăтмахра çынсем питĕ телейлĕ порнаç, вĕсем пахчасем тăрăх палнисем* çисе анчах çӳреç.

Тамăкра вара усалсем çынсене пысăк вĕри çатмасене чĕлхепе çулаттараç. Мăн хоран ăшне ярса вĕретеç тет, аяла вот хорса тăраç тет. Çынсене тамăкра тĕрлĕ йывăр ĕçсем ĕçлеттереç. Вĕсене лаша вырăнне те кӳлсе çӳреç. Утланса та чупаç усалсам çынсам çинче. Рая лекнисем вара торăсемпе пĕрлех порăнаç тет.

## 1498

Çылăхлă çынсем вилнĕ хыççăн тамăка лекеççĕ, унта вĕсене тамăк хуранĕнче асаплантараççĕ. Тӳрĕ кăмăлпа пурăннисем ăçтамаха лекеççĕ.

Ăçтамаха лекес тесен ахрат çырми урлă хунă çинçе кашта тăрăх каçмалла. Çылăхлă çын кашта çинчен аялалла чăмать те ĕмĕр нуша курма тӳрех тамăк хуранне лекет. Ырă кăмăллисем çав урлă каштапа утсах ăçтамаха çитеççĕ, вара унта ĕмĕрĕпех ырă курса пурăнаççĕ.

## 1499

Çак çĕр çынсем хăй вилĕмĕпе вилмелле тенĕ. Хăй вилĕмĕпе вилмесен, сăмахран, çакăнса, перĕнсе, чикĕнсе вилсен çын леш тĕнчере тамăка лекет тенĕ. Хăй вилĕмĕпе вилмен çынсене масар хуралне тăратаççĕ тесе ĕне-

* Пан улми.

неççĕ. Леш тĕнчере шыв пит хаклă тет. Хăй тĕллĕн вилмен çынсен çапла яланах лашапа шыв турттармалла тет.

Хăйĕн вилĕмĕпе тата çылăхсăр çын вилсен ырлăх курать. Рая лекет теççĕ.

## 1500

Вăрманхĕрри Чурачăкра пĕр питĕ чăрсăр этем пурăннă. Унăн та вилме вăхăт çитнĕ. Турă ăна питĕ тарăхнă пулнă та тамăка янă. Ку этем тамăкра та лăпланмасть: хăй пек çынсене пухать те шуйттансене хирĕç тăрать. Вара шуйттансем çынсене çунтарас вырăнне çынсем шуйттансене çунтарма тытăнаççĕ. Çавăнпа масар çинче кăвак тĕтĕм тухкалать.

## 1501

Пĕр çын çул çӳреме кайнă, пĕлĕт хĕрри шырама. Кайсан-кайсан пырса тупрĕ хай хăй шыранă пĕлĕт хĕррине. Пĕлĕт анать тет çĕр çумне çитиччен. Çул çӳрен пынă çул çинче уçă вырăн, чукун çул çинчи свот манерлĕ.

— Ку леш тĕнчепе ку тĕнчене пĕрлештермелли алăк пулĕ, вилнĕ çын чунĕ çакăнтан тухать пулĕ, — терĕ хăйне хăй çур сасăпа. Пĕлĕчĕ ытла хулăмах мар. Хытă кăвак, шурă, хура хуçăлми япала. — А, ку пĕлĕт кун пек-иç-ха, хĕвелсем унăн çинче-иç-ха, çăлтăрĕсем ăçта-ши? — тесе илчĕ хăй ăшĕнче çур сасăпа.

Пĕрлештерекен вырăнтан лашапа та тухма пулать. Хай çул çӳрекен ку алăк виттĕр мĕн пуррине курма тухса карĕ. Кайсан-кайсан инçех те каймарĕ, хай алăкран пĕр пӳрте çитрĕ. Пӳртĕн карнис çинче: «Иртсе çӳрекенсем çак пӳрте кĕрсе выртмасăр иртсе кайма юрамасть. «Тамăк» тесе пĕр кĕтессе пĕчĕкреххĕн урлă-пирлĕ сас паллисемпе çырнă. Кĕмесĕр иртсе кайма юрамасть тесе çырнă пулсан кĕрсе канса тухас тесе пӳрт алăкĕ патнелле утрĕ. Пӳрт алăкĕ патĕнче çын пуçĕсем курсан: «Тем кунта ырă япала пулас çук, ахаль каламан «тамăк», — тесе илчĕ çур сасăпа ăшĕнче. Шикленсех кĕрсе курса канса тухас-ха терĕ.

Кĕчĕ... Çын туллиех... Сĕтел хушшинче виçĕ Усал çынна касаççĕ те пуçĕсене кантăк витĕр прахаççĕ, кĕлеткине тепĕр Усал таçта илсе каять, е пӳрнисене, аллисене, урисене татса чĕрĕ çынна муритлеççĕ. Хăй ăшĕнче çул çӳрекен: «Кунта май килмĕ, вилĕм шырани çех вăл», — тесе тухса пуртекунчен* йĕри-тавра пăхкаласа: «Нимĕн те çук, çатма çинчи çӳпĕ пек пĕр тамăк пӳрчĕ анчах», — терĕ. Тата çӳлелле пăхса: «Кунта та хамăр тĕнчери пек пĕлĕт», — тесе хăй килнĕ çулпала каялла таврăнса киле килчĕ. Килте хăй мĕн курни çинчен каласа пачĕ.

## 1502

Пурăннă тет карчăкпа старик. Пурнăçĕ çителĕксĕр пулнипе иккĕшĕ вăрçса каяççĕ тет. Старикки калать тет хăйĕн юратнă мăшăрне: «Карчăк, эпир санпа питĕ нумай вăхăт хушши пурăнтăмăр. Ача-пăчасене те çуратса ӳстерсе пĕтертĕмĕр, хамăр та ватăлтăмăр. Пĕрмаях эс мана вăрçатăн. Ка-

* Пӳрт умĕнчен, çенĕкрен.

ятăп эпĕ сан патăнтан тухса, çылăхсем нумайланса кайрĕç пулмалла. Çылăхсене каçарттаратăп та урăх сан пата килместĕп, рая каятăп», — тет.

Акă пырать старик çулпала. Урине çĕнĕ пир тăла авраса çыхнă, çĕнĕ çăпата сырса янă, çурăм хыçне хăй валли пĕр эрнелĕх кăшт-кашт çырткаламалли илнĕ те кутамкка туса çакса янă. Хĕвел хĕртсе пăхнипе пир кĕпине йӳле янă, пурçăн çипрен пĕтĕрсе çыхнă пиçиххине ăшă пулнипе салтнă та аллинче тытса пырать, кутамккине чиксе хурса вăхăта сая ярас темен пулмалла.

Утать малалла. Çĕр кунпа улшăнать, кун та çĕрпе улшăнать. Нумай утать, миçе кун, миçе çĕр утнине старик хăй те манса кайнă ĕнтĕ.

Уринчи çĕнĕ çăпати те çĕтĕлсе пĕтрĕ, кĕпи тарпа касăлса хулпуççи çинче тала пуçланă, çаплах утать старик, каялла çаврăнас темест-ха. Хутаçри апачĕ те тахçанах пĕтсе çитрĕ ĕнтĕ. Çул çинче мĕнле, ăçта май пулать, çавăн пек тăранкаласа пырать-ха хальлĕхе.

Акă пысăк вăрмана пырса тухать. Вăрман хĕрринчен кайăк та вĕçсе тухаймалла мар чăтлăх пуçланать. Старик йĕплĕ, ӳте чикекен чăтлăхран виçĕ кун хушши тухать. Çийĕнчи пур пек кĕпи-йĕммисене йывăç чăтлăхĕнче çаклатса темиçе тĕлтен çурнă, çара ӳтне те темиçе тĕлте ваттарнăран юн сăрхăнса тăрать.

Акă чăтлăхран тухсан пысăк уçланкă. Уçланкăра тем тĕрлĕ те илемлĕ чечексем кавир пек сарăлса лараççĕ. Кун чухлĕ нумай тата чипер чечексене ниçта та курман ку таранччен. Уçланкă варринче пысăк та тĕкĕр пек çап-çутă кӳлĕ. Кӳлĕ варринче вут-çулăм пĕрхĕнсе тăрать. Пĕр вăхăт ним тума аптăраса тăчĕ старик. Куçĕ çеç темшĕн час-часах мăчлатма пуçларĕ. Çапла тăнă вăхăтра ун умне пĕр хресченле тумланнă арçын тухса тăчĕ. Старик лайăхрах пăхрĕ те çын çине, паллаканниех пулчĕ-мĕн. Хăйсен ялĕсемех, тата, çитменнине, тахçанах вилнĕ кӳршĕ арçынниййĕ Лекçей пулах кайрĕ. Аптăранипе старик сăмах та чĕнме тытăнса тăчĕ.

— Ан, хăра, Мирун, ку эпĕ, Лекçей. Эпĕ кунта масар пуçлăхĕ. Ут ман хыçран, — терĕ лăпкă сасăпа Лекçей. Мирун чĕлхи çĕтрĕ, вăл калаçайми пулчĕ темиçе çул калла çĕр айне пулнă Лекçее курсан.

Акă пырать Мирун тĕттĕм те ансăр коридорпа Лекçей хыçĕнчен: «Унтан юлас марччĕ тата ăна лекес те марччĕ», — тесе.

Тĕттĕм коридорпа пынă чух çынсен çурăм шăммисем, пуç шăммисем ялтăртатса çутатса юлаççĕ.

— Кусем ятлă çынсен шăммисем. Вĕсен хуçисем çылăхлă çынсем пулнă. Халĕ тамăк хуранĕнче вĕресе çылăхсенчен уйрăлнă ĕнтĕ, анчах пĕтĕмпех уйрăлса пĕтеймен-ха. Вĕсене тепĕр хут çатма çинче хĕртеççĕ, — терĕ Лекçей.

Акă малалла кайрăмăр. Пысăк пӳлĕме çитсе тухрăмăр. Пӳлĕмĕнче мунчари пек пăс мăкăрланать. Урай варринче пысăк хуран. Хуранта шыв сиксе вĕрет. Шыв вĕренĕçемĕн çын пуçĕсем çӳçĕпех, урисем, аллисем, çурăмĕсем шыв ăшĕнчен сирпĕне-сирпĕне тухаççĕ те каллех хуран тĕпнелле путаççĕ.

— Акă кунта çылăхлă çынсене çылăхран тасатаççĕ, — терĕ Лекçей. Мирун пĕтĕм шăм-шаккипе çӳçенсе илчĕ.

— Малалла кайрăмăр, — терĕ Лекçей.

Акă вут-çулăм патне çитсе тухрĕç. Шатăртатса çунакан çулăм çинче тем пысăкăш çатмасем çатăртатса лараççĕ. Кашни çатми çинчех этем шăммисем вĕтеленеççĕ.

— Кусем ĕнтĕ çылăх хуранĕнче вĕретнĕ çынсем, хăйсен çылăхĕсенчен тĕпренех тасалса çитеççĕ, — терĕ Лекçей.

— Мĕн туса вилнĕ вара ку çыннисем? — тесе хăюлăх çитерсе ыйтрĕ Мирун.

— Кусем хамăр ялсемех, пĕри Теренти Матви, тепри Охрим Уличĕ, виççĕмĕшĕ Улатимĕр Кĕтеринĕ, — терĕ Лекçей. «Пурте эпĕ паллаканнисемех», — тĕлĕнчĕ Мирун.

— Мĕн тунине халь тин калама юрамасть, мĕншĕн тесен вĕсем халь çылăхĕсенчен тасалнă, эпĕ сана каласа кăтартсан хам та, вĕсем те тепĕр хут çылăха кĕреççĕ, — терĕ Лекçей.

Вĕсем малалла утрĕç. Чечеклĕ уçланкăна çитсе тухрĕç. Унта темĕн чухлĕ пĕчĕк ача-пăча, вĕсене пăхакан нянькăсем.

Чечексене шăварса тасатсах тăраççĕ вара чечексем хушшинче çӳрекен ачасем. Вĕсен хушшинче пурте пур: арçынни те, хĕрарăмĕ те, ватти те, çамрăкки те.

Анчах çакăн чухлĕ чечеке темшĕн сахал çын уйăрнă вара.

— Акă ку рай пахчи. Кунта чи таса çынсене çеç кĕртеççĕ. Пирĕн малалла кайма юрамасть çак хапха патĕнчен, мĕншĕн тесен эпĕ çылăхран тасалман-ха. Кунта ĕçлекенсен пурин те кашни чечек ятне, вĕсене пăхма пĕлмелле. Çылăхран тасалсан та кунта пурте килеймеççĕ, е килсен те тепĕр хут çылăха кĕрсе тухса каяççĕ. Çанпа та кунта ĕçлекен çынсем сахал. Рай пахчинче çӳренĕ чухне чечексене çеç юратма пĕлмелле, вĕсене шăварма та пĕлмелле. Урăххисене юратсан тата шăварсан рай пахчинче тытăнса тăрасси çинчен шухăшламалли те çук, — терĕ Лекçей.

— Турă çырлахтăрах, ара, ку ют хĕрарăмсемпе çӳреме юраманни çинчен тата эрех шĕвекне ĕçме юраманни çинчен калать вĕт, — тесе сасăпах кăшкăрса ярать Мирун, çавăнтан куç умĕнчен Лекçей те çухалчĕ.

Нумайччен тăчĕ Мирун çутă кӳлĕ хĕрринче шухăша кайса. «Кун пек тертлĕ çĕршыва хам ирĕкпех килес мар-ха, тарас кунтан хăвăртах», — тесе питĕ хытă чупса каять.

Хăй те сисмест, йĕп-йĕпе тара ӳкнĕскер, чупса каятăп тесе хăй çывăракан вырăнĕ çинчен шаплатса персе аннине.

Нумайччен ыратакан пуçне хыçкаласа ларчĕ тет Мирун хăйĕн арăмĕ çывăракан вырăнĕ умĕнчи урайĕнче: «Ак сана рай!» — тесе.

## 1503

Çын вилсен те ун чунĕ леш тĕнчере пурăнать тет. Сăпайлă, çылăхсăр çынсем рая каяççĕ. Вилсен пурте çав пĕр пысăк çулпа утаççĕ тет. Кайсан-кайсан çулĕ икке пайланать тет. Тамăкалла питĕ нумаййăн каяççĕ тет. Рай еннелле вара çĕр çынран иккĕшĕ çеç каяççĕ тет. Вилсен çыннăн хĕрĕх суд урлă тухмалла тет. Çав хĕрĕх кун хушши вилнĕ çын масар хапхи хуралçинче тăрать тет. Тамăка каякансене вĕри хурана ярса тарăхтараççĕ тет, усалĕсем вуттине пăрахса кăна тăраççĕ тет. Çакăнса вилнисене тӳрех лаша тăваççĕ тет те, усалсен асли вара ăна пĕрмай кӳлсе чуптарса çӳрет тет. Рая лекнисене питĕ лайăх тет пурăнма. Унта чечексем, йывăççем ӳсеççĕ тет, кайăксем юрлаççĕ тет.

Пĕр пуян пурăннă тет тахçан. Вăл çав тери хытă пулнă тет. Укçине хăй вилсен пуç айне хумалли минтер тунă тет. Кăна шăтăкне ярсанах çĕр çăтса ярать тет. Тарçисем килне виле чиксе таврăнсан укçине шырама пуçлаççĕ

тет. Анчах та тупаймаççĕ тет. Пĕр тарçи укçине хăйĕнпе пĕрле чиксе янине пĕлтерсен ку тарçăсем виçĕ кун пĕр чарăнми пăяв яваççĕ тет. Кам леш тĕнчене анмаллине пĕлме шăпа тытаççĕ. Шăпа тухни хайхи пăявпа анать-анать тет те аялти тĕнчене çитсе те тăрать тет. Пĕр сукмакĕпе кайсан-кайсан пĕр лашана тĕл пулать тет. Лаши чĕлхе кăларать тет.

— Мĕншĕн килтĕн? — тесе ыйтать тет.

Ку çын веçех ăнлантарса парать тет. Хайхи Лаша калать:

— Ак часах шуйттансем килĕç, — тет, — малтан вĕттисем, кайран асли, — тет.

— Сана вĕсем балалайка калама хушĕç. Эсĕ вара тăрсан-тăрсан пĕр хĕлĕхне тат. Вара шуйттансем санран ыйтĕç: «Ăçтан хĕлĕх тупма пулĕ?» — тесе. Эс кала: «Чиркÿ тăрринчен тесе», — тет.

Ĕç лаша каланă пек пулса иртет тет. Леш шуйттансем сăнаççĕ тет, транк-транк сиккелеççĕ тет. Тарçă хайхи чиркÿ тăррине хăпарса каять тет. Лешсем аялта хыпалантараççĕ, кăшкăраççĕ тет. Хайхи чан çапса ярать тет. Çав вăхăтрах тарçă лаша сассине илтет тет:

— Мана çăлас тесен çурта сутса çул хĕрне çĕнĕ çурт лартăр. Кашни килен-каяна ĕçтерсе-çитерсе, каç выртттарса ярăр. Вара эпĕ шуйттансен аллинчен хăтăлăп...

## 1504

Пур çын чунĕ те вилсен пĕлĕте хăпарать тет. Малтанлăха, вилсенех, Турă вĕсене хăйĕн патĕнче 3 кун хушши усрать тет. Çав виçĕ кун хушшинче вилнĕ çынсене икĕ ушкăна пайлаççĕ тет. Пĕр пайне, çылăхсăррисене, Турă рая, хăй патне илсе юлать тет. Тепĕр пайне, çĕр çинче пурăннă чух нумай çылăх тунисене, Шуйттан хăйпе пĕрле тамăка илсе анать тет. Пайланă çĕрте Турă та, Шуйттан та пур теççĕ. Вĕсене, çынсене, икĕ ушкăна çапла пайлаççĕ тет. Пĕлĕтре икĕ питĕ пысăк хуран пур теççĕ, хуран айĕнче вут çунать тет. Çав вута пĕртте сÿнме памаççĕ тет. Хуранра шыв сиксе вĕрет тет. Çав икĕ хуран çумĕн пĕрер пусма тăратнă теççĕ. Пусмисем çав тери вăрăм тет, çавăнпа пусмин вĕçĕ те курăнмасть тет. Çынсем çав пусмасем патне черет тăраççĕ тет. Çав çынсем пĕрерĕн-пĕрерĕн пусма çине хăпараççĕ тет. Хăшĕсем пусма çине хăпарсанах хурана татăлса анаççĕ тет. Кусем пысăк çылăхлисем тет. Теприсем çурри таран хăпарсан ÿкеççĕ тет хурана. Кусем вара питĕ пысăках мар çылăхлисем тет. Питĕ сахал çын пусма вĕçне çитсе курăнми пулать тет. Кусем рая юлакансем пулаççĕ тет.

## 1505

Ваттисем каласа панă тăрăх, вилсен кашни çынах «Турă сучĕ» умĕнчен иртет тет. Кунти чăвашсем вилсен çĕлен çип валеçеççĕ. Вилсен вара «Турă сучĕ» умне çав çип тăрăх илсе каяççĕ тет. Çавăнпа та виле вилсен шпулька çиппи мар, çĕлен çип пама тăрăшаççĕ. Çĕлен çип шпулька çиппинчен хулăнрах ĕнтĕ, çавăнпа ун тăрăх утма та çăмăлтарах çав. Суд пÿлĕмне кĕнĕ чухне вара йĕп çăрти (йĕп пуçĕ) витĕр ирттереççĕ тет. Çавăнпа та ĕнтĕ кунти чăвашсем виле вилсен 40-мĕш кунне йĕп валеçеççĕ. Ку судра вара хÿтĕлекенĕ — Пирĕшти, айăплаканĕ — Усал пулать тет. Çавăн пекех суда свидетель пулса вилнĕ çыннăн малтанхи хреснуй ачине те пыма юрать тет.

Çыннăн сылтăм хулĕ айĕнче Пирĕшти, сулахай хулĕ айĕнче Усал пурăнать тет. Вĕсем çын хăй ĕмĕрĕнче мĕнле усал ĕçсем тунине шута илсе тăраççĕ тет. Кашни усал сăмахах е усал ĕçех Усал хăй кĕнеки çине, ырă сăмахсемпе ырă ĕçсене Пирĕшти хăй кĕнеки çине çырса пыраççĕ тет. Вара вĕсем судра кашниех хăйсен кĕнекисене вуласа параççĕ тет. Унтан, судьясем пулсан, малтанхи хреснуйне свидетель вырăнне итлеççĕ те канашлăва каяççĕ тет.

Канашлура вĕсем çыннăн ырă тата усал енĕсене танлаштарса пăхаççĕ те ырлăхĕ çĕнтерсен — çăтмаха, усаллăхĕ çĕнтерсен ĕмĕрлехех тамăка ямалла тăваççĕ тет.

# ӐНЛАНТАРУСЕМ

«Чăваш халăх пултарулăхĕ» ярăмăн пĕрремĕш кăларăмĕ хайлаллă сăмахлăхăн чи авалхи тĕсĕсене — мифсене (хаймаксене), легендăсене (хачмаксене), халапсене пĕрлештерсе тăрать. Вĕсене пĕрремĕш хут çапла туллин тата ăслăлăх енчен тĕплĕн ушкăнласа пичетленĕ. Кĕнеке тĕнче пулса кайни çинчен калакан хаймаксемпе пуçланать. Унтан вара Çӳлти тĕнче, Çут тĕнче, Леш тĕнче çинчен каланисене йĕркипе вырнаçтарса пынă. Çӳлти тĕнчепе Леш тĕнче çинчен калакан пайсем кăткăс мар. Вĕсен тытăмне ăнланма та, ăнлантарма та меллĕ. Кăткăсси — Çут тĕнчери пулăмсемпе çынсем çинчен каланисем. Кунта Çĕр çинчи тата Леш тĕнчери ырă-хаяр кăна мар, чĕрĕ чунсем, ӳсен-тăран, çынсемпе несĕл пуçĕсем, паттăрсем, халăхсемпе чĕлхесем, культура ĕçĕ-хĕлĕ, хуçалăх, тĕрлĕ вĕрентӳсем, пĕлӳсем, чунлăхпа чунсăрлăх, авалхи сартăшпа ислам тата православи тĕнĕсем, шыв илни, тĕнче пĕтни е ахăрсаман çинчен каланисем кĕреççĕ.

Усал, арçури, вупăр, путăщ (вутăш), йĕрĕх, ийе çинчен калакан тĕрлĕ хайласем авалхи çын хăй ĕненсе хывнă мифла тĕслĕхсенчен пуçланаççĕ те юлашки вăхăтченех — шӳтлесе, юмахлатса, юптарса каланă хайлавсем таранах çуралса пыраççĕ. Хăш-пĕрисен варианчĕсем теçеткерен те иртеççĕ. Пĕр пек япаласене, вĕсенче кăшт-кашт уйрăмлăхсем пур пулсан та, ку кĕнекене кĕртме май килмерĕ. Вĕсене пухса çитернĕ хыççăн та катертме тиврĕ. Çакна «Ăнлантарусенче» май пур таран палăртса хăварма тăрăшрăмăр. Кĕнекене кĕмен, анчах архивсенче упранакан тĕслĕхсене тĕп вариант номерĕпех паллă туса пыма йышăнтăмăр. Кашни вариантăн хăйĕн çум номерĕ пур. Тĕслĕхрен, 674 тесе палăртнă пулсан, çумри 1), 2), 3), 4), 5), 6) цифрăсем ийе çинчен калакан 674-мĕш халапăн татах ултă варианчĕ пуррине пĕлтерет. «Ăнлантарусем» пайра вĕсен паспортне те панă. Çапла туни малашнехи тĕпчевсемшĕн кирлĕ. Пĕр йышши хайласем пĕр ушкăнра пулсан вĕсене шыраса тупма, текстсене хушса пуянлатса пыма çăмăл.

«Чăваш халăх пултарулăхĕ» ярăмри кĕнекесенче текстсем хыççăн та, ятарлă «Ăнлантарусенче» те хайлава ăçта, камран, хăçан çырса илнине (паспортне) кăтартса пынă. Ăрăмлă хайласен кĕнекинче паспортне текст хыççăнах кăтартни кирлех марри курăнчĕ, мĕншĕн тесен мифсен, легендăсемпе халапсен вырăнти уйрăмлăхĕ туй, ĕçкĕ-çикĕ, вăйă юррисенчи пекех палăрса тăмасть.

Ламран лама куçса пынă чухне мифран хачмак пулса пынă, вара халапа куçнă, унтан вара юмаха тухса кайнă тĕслĕхсем тем чухлех. Мифла

юмах-халапа ку кăларăма вырăн параймарăмăр. Вĕсем «Юмахсем» кĕнекере пулĕç. Текст паспорчĕсенче иртнĕ ĕмĕрсенчех çырса илнĕ тĕслĕхсене ĕлĕкхи тата хальхи администраци пайланăвĕ тăрăх палăртса хăварма тăрăшнă. Ытларах чухне вырăнсене хальхи пайлану тăрăх çырса хăварнă.

Тулай, тури, анатри, анат енчи чăвашсен калаçăвĕнчи, йăлинчи уйрăмлăхсене май пур таран упраса хăварас тенĕ. Вырăнти калаçу сăмахĕсем Л.П. Сергеев профессор хатĕрленĕ ятарлă сăмахсарсенче пур. Апла пулсан та сайра тĕл пулакан сăмахсемпе пуплевсене хутьен айĕнче çăлтăрчăкпа (*) паллă туса ăнлантарса хăварнă. Ун пек сăмахсем нумай мар.

Ырăсемпе хаярсен, усалсемпе тĕселсен ячĕсене пĕчĕкрен е пысăкран, пĕрле е уйрăм çырассине кĕнеке ум сăмахĕсенче ăнлантарса хăварнăччĕ. Кунта татах калăпăр: пайăр пĕлтерĕшпе усă курнă чухне ятсене пысăкран тата пĕрле, ытти чухне пĕчĕкрен тата уйрăм çырма палăртнă: Турă — турă, Шуйттан — шуйттан, Хĕртсурт — хĕрт-сурт, Арçури — ар çури, Вĕреçĕлен — вĕре çĕлен, Вутчулĕ — вут чуль, Çавраçил — çавра çил, Саркун — сарă кун. Ăрăмлă сăмахлăхри кашни сăнара (героя) ятарласа ăнлантарни кирлĕ мар, мĕншĕн тесен мифсем-халапсем вĕсене хăйсемех тем тĕрлĕ те ăнлантарса параççĕ. Кайран çырса илнисенче ырă-хаяр сăнарĕсен пĕлтерĕшĕсене пăтратса яни тăтăшах тĕл пулать. Вĕсене мĕнле çырса илни хальлĕнех хăварма тăрăшнă, мĕншĕн тесен çавсем урлă халăх ăнкарулăхĕ улшăнса пынине сăнама пулать. Çапах та, XX ĕмĕр вĕçĕнче алă вылятмалла кăна çырса илнĕ пули-пулми тĕслĕхсене кĕнекене кĕртни вырăнлах мар тенĕ. Çавăнпа ун пек тĕслĕхсене вариант тесе пăхнă.

Чăваш тĕнчин хирĕçле мăшăрлăхĕ кирек хăш ушкăнри хайласенче те аванах курăнать. Ырăсене кăтартакан тĕслĕхсене кĕнекене кĕртнĕ пулсан, хаярсен сăмахлăхне те вырăн памаллах. Усалсене вырăн панă пулсан, тĕселсем те кĕнекере пулмаллах. Çав тачă çыхăнури мăшăрлăха пăсни чăваш мифологийĕн тымарне татнă пулĕччĕ. Çавăнпа кĕнекене Эсремет пăскăнне те, усал-тĕсел сăмахлăхне те кĕртнĕ. Паллах, эсремет, усал-тĕсел, чĕммичĕмери сăмахлăхне кунта туллин пама май килмерĕ. Вĕсене «Вĕрӳ-суру сăмахлăхĕ» кĕнекере пĕрле пичетлеме шутларăмăр. Çавăн пекех тĕшмĕш халапĕсене, Леш тĕнчере «пулса курнисем çинчен» каланисене, чир-чĕрпе асап-нуша халапĕсене уйрăм кĕнекере халăх прозин ытти жанрĕсемпе пĕрле пама палăртнă.

Кĕнеке вĕçĕнче чăваш хайли-халапĕсене тишкернĕ ĕçсен тата усă курнă кĕнекесен библиографине панă. Унтах вĕсемпе усă курнă чухне мĕнле кĕскетсе çырнине палăртса хăварнă. Тĕслĕхрен, «Ашм., ЧСК, XV, 17» тени Н.И. Ашмарин пухса кăларанă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» сăмахсарăн XV томĕнчи 17-мĕш хут ене (страницăна) пĕлтерет.

Жанр ăнлантарăвĕсене малтанласа Е.С.Сидорова тĕпчевçĕ çырнă, кĕнеке валли çĕнĕлле классификаци тунă хыççăн ăслăлăх тĕпчевçи В.П.Станьял тӳрлетсе, çĕнĕлле йĕркелесе тухнă.

Архиври алçырусемпе кĕнекери текстсене О.Н.Терентьева фольклорçă танлаштарса тĕрĕсленĕ.

# I. ТĔНЧЕ ТЫТĂМĔ

## ТĔНЧЕ ПУЛСА КАЙНИ

**1.** 1780 ç. К.Милькович Чĕмпĕр таврашĕнчи чăваш ялĕсенче илтсе çырнă. Милькович. — ИОАИЭ. XXII т., 55 с. Вырăсларан В.П. Станьял куçарнă.

**2.** 1983 ç. Çĕрпӳ р-чи Тутайкассинче А.М.Кузьмина çырса илнĕ. — ЧТП архивĕ, сăмахлăх пуххи, 4-мĕш тетрадь.

**3.** 1879—1880 çç. ЧР Элĕк таврашĕнче В.К.Магницкий çырса илнĕ. — Магницкий, 190. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**4.** 1984 ç. ЧР Тăвай р-чи Çĕнĕ Пуянкассинче 86-ри Т.Яковлеваран Д.С.Семенов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 упр., 6-мĕш тетр.

**5.** 1896—1900 çç. ТР Пăва р-чи Элшелте Г.Т. Тимофеев çырса илнĕ. — Тимофеев, 72 с.

## ТĔНЧЕНЕ ПУЛТАРНИ

### Шывпа çĕр

**6.** 1974 ç. ЧР Шупашкар р-чи Шĕнерпуçĕнче М.Е. Емельяновран Н.Семенова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 135, 12 с.

**7.** А.В. Рекеев. 1896, 1—2 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**8.** Г.Комиссаров, 4 с.

**9.** 1938 ç. ЧР Патăрьел р-чи Чăваш Сăкăт ялĕнче Н.Падянов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 1, 24 с.

**10.** 1977 ç. ЧР Патăрьел р-чи Тикешре В. Семенова çырса илнĕ. XII, 1980, 1 №, 25 с.

**11.** 1992 ç. ЧР Шупашкар р-чи Вăрăмтура А.П. Петроваран С.Моисеева çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 528-мĕш тетр.

**12.** 1989 ç. ЧР Красноармейски р-чи Туçа Чуракассинче О.Д. Григорьева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 22-мĕш тетр.

**13.** 1992 ç. ЧР Елчĕк р-чи Тăрăм ялĕнче Т.Баймушкина çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 570-мĕш тетр.

**14.** 1992 ç. ЧР Елчĕк р-чи Вырăскассинче М.И.Кирилловăран Н.Кириллова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 569-мĕш тетр., 84 с.

**15.** 1904 ç. ЧР Элĕк р-чи Ярхуньушкăнь ялĕнче С.Филимонов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 151, 136 с.

**16.** 1992 ç. ЧР Канаш р-чи Янкăлчра 81-ри А.З.Красноваран Л.Гурьева çырса илнĕ. — ЧЛК, 1993, 609-мĕш тетр., 31 с.

**17.** 1911 ç. Оренбург обл. Бугуруслан р-чи Пайтуканпуç ялĕнче А.Липатов çырса илнĕ. — ЧСК, 6 кĕн., 5 №. I, 207, 105—106 с.

**18.** 1914 ç. ЧР Канаш р-чи Сухайкассинче А.Я.Аделеев çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 251, 304 с. Çак авторăнах тепĕр варианчĕ. I, 259, 276 с.

**19.** 1949 ç. ЧР Красноармейски р-чи Карайра П.И.Ивановран И.А. Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ НА, III, 356, 6 с.

**20.** 1985 ç. ЧР Канаш р-чи Янкăлчра 75-ри П.Д.Сошниковăран Е.В.Васильева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 54-мĕш тетр.

**21.** 1912 ç. Самар облаçĕнчи Клевлĕ р-чи Кив Семеньел ялĕнче И.Иванов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 181, 230 с.

**22.** 1984 ç.ЧР Етĕрне р-чи Тури Ачакра 78-ти А.Корниловăран Н.Игнатьева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 55-мĕш тетр.

**23.** 1974 ç. ЧР Шупашкар р-чи Тавăшкассинче М.И.Ивановран А.В.Антонова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1286, 87 с.

**24.** 1992 ç. ЧР Хĕрлĕ Чутай р-чи Атнарта 82-ри Г.Н.Назаровран О.Сидорова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 559-мĕш тетр., 35 с.

**25.** Хăçан, ăçта, кам çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, XII т., 86 с.

32. Заказ № К-4231.

**26.** 1988 ç. ПР Шаран р-чи Виççăлта Е.М.Семеновăран С.Т.Макарова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1045, 21 с.

**27.** 1957 ç. ЧР Комсомольски р-чи Çĕнĕ Мăратра М.Муравьева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1828, 51 с.

**28.** 1982 ç. ЧР Красноармейски р-чи Тусайра 61-ри М.Захаровăран В.Алексеева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 31-мĕш тетр.

**29.** 1992 ç. ЧР Елчĕк р-чи Вырăскассинче Е.Соловьевăран Н.Кириллова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 569 тетр., 32 с.

**30.** Е.С.Сидорова архивĕнчен илнĕ. Паспортне кăтартман.

**31.** Комиссаров, 5—6 с.

## ШЫВ, ТИНĔС, ЮХАН ШЫВ, КӐЛĔ

### Шыв

**32.** 1983 ç. ЧР Çĕрпӳ р-чи Кăтакра 69-ти С.Ивановăран А.Афанасьева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 38-мĕш тетр.

**33.** 1992 ç. ЧР Патăрьел р-чи Анат Туçара 78-ти Я.Барановран П.Баранов çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 522-мĕш тетр.

**34.** 1992 ç. ЧР Хĕрлĕ Чутай р-чи Атнар ялĕнче 70-ти А.Д. Мадебейкинран О.Сидорова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 559-мĕш тетр.

**35.** 1978 ç. ЧР Элĕк р-чи Тавăтра Ан. Осиповăран Алевтина Осипова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1172, 3 с.

**36.** 1992 ç.ЧР Муркаш р-чи Кашмашра Н.Елькинăран А.П.Сваев çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 549-мĕш тетр.

**37.** Элĕк р-чи Яккушкăнь ялĕнче çырса илнĕ. Хăçан, кам çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, XVII, 206 с.

**38.** ЧР Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьелĕнче çырса илнĕ. Хăçан, кам çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, XVII, 175 с.

**39.** Ульяновск обл. Чăнлă р-чи Чăвашкассинче çырса илнĕ. Кам, хăçан çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, XVII, 175 с.

**40.** 1993 ç. ТР Аксу р-чи Унтакшăра 69-ти М.М. Марковăран çырса илнĕ. Кам çырни паллă мар. — ЧЛК, 1993, 537-мĕш тетр.

**41.** 1910 ç. Самар обл. Похвиçнĕ р-чи Çтухальте Е.Шамброткина çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 243, 50—51 с.

**42.** 1992 ç. Самар обл. Шунтал р-чи Ухинкел ялĕнче 67-ри Х.Таймухинаран О.Воронцова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 603-мĕш тетр.

### Тинĕс

**43.** 1986 ç. ЧР Сĕнтĕрвăрри р-чи Чăнкассинче 74-ри А.Смирновăран Г.В.Киселева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 55-мĕш тетр.

**44.** 1978 ç. ЧР Элĕк р-чи Çирĕккассинче З.Павлова çырса илнĕ. — III, 1174, 46.

**45.** 1984 ç. ЧР Канаш р-чи Çеçпĕл ялĕнче Л.Филиппова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 50-мĕш тетр.

**46.** ЧР Муркаш р-чи Лап Олкаш ялĕнче çырса илнĕ. Кам, хăçан çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, I, 317 с.

### Путăк

**47.** 1992 ç. ПР Пишпӳлек р-чи Кистенлĕре 90-ри Е.Н. Кононовăран М.Кононов çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 540-мĕш тетр.

### Пĕлĕт

**48.** Пенза облаçĕнчи Итĕм Кура ялĕнче В.И.Дворников 1981 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче çырса илнĕ. В.П. Станьял архивĕнче упранать.

**49.** 1984 ç. ЧР Муркаш р-чи Çармӑскассинче 76-ри А.Е.Патееваран Н.Т.Патеева çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 59-мӗш тетр.

**50.** 1984 ç. ЧР Канаш р-чи Çеçпӗл ялӗнче Л.И.Филиппова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 50-мӗш тетр.

**51, 52.** 1978 ç. ЧР Элӗк р-чи Çирӗккассинче З.Павлова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, III, 1174, 42 с.

**53.** 1881 ç. ТР Пӑва р-чи Элшел таврашӗнче М.П.Петров çырса илнӗ. Ашмарин, ЧСК, Х, 201 с.

**54.** Комиссаров, 6 л.

**55.** С.Г.Григорьев (Эсрел) çырнӑ. Ӑçта, хӑçан çырни паллӑ мар. — ЧПГӐИ ӐА, III, 793, 35 с.

**56.** 1960 ç. Пишпӳлекре А.Е.Макароваран 30—35 çул каялла илтнине Н.А.Макаров аса илсе çырса хунӑ. Вӗçӗнче çакӑн пек çырни пур: «Шыв тасамарлӑха çӗклеймест» — ваттисен çак сӑмахӗсем аса килеççӗ, кунта, юмахӗ те çав шухӑшах çирӗплетет. Ку юмахра çакӑ та курӑнать: чӑваш çынни тасалӑхшӑн кӗрешнӗ сӗм авалтан.

**57.** 1938—1970 çç. ЧР Красноармейски р-чи Пшонкӑра В.Д.Дмитриевран И.А.Патмар çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, III, 356, 13—14 с.

**58.** 1922 ç. ЧР Муркаш р-чи Купӑрляра И.Д.Никитин çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 390, 332 л.

**59.** ЧР Вӑрмар р-чи Çиçтӗпе ялӗнче çырса илнӗ. Хӑçан çырни паллӑ мар. — Ашмарин, ЧСК, XIV, 230 с.

**60.** ТР Çӗпрел р-чи Кив Чакӑра çырса илнӗ. Хӑçан, кам çырни паллӑ мар. — Ашмарин, ЧСК, Х, 200 с.

**61.** 1982 ç. ЧР Красноармейски р-чи Тусайра 61-ри М.Захароваран В.В. Алексеева çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 32-мӗш тетр.

**62.** 1984 ç. ЧР Канаш р-чи Çеçпӗлте Л.И.Филиппова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 5-мӗш тетр.

**63.** Тимофеев, 67 с.

**64.** 1971 ç. ЧР Çӗмӗрле р-чи Тури Макаринта Е.А.Петейкинӑран Л.С.Герасимова çырса илнӗ. — ЧЛК, 1992, 17-мӗш тетр., 7—8 л.

**65.** 1971 ç. ЧР Çӗмӗрле р-чи Тури Макаринта Е.А.Петейкинӑран Г.Егорова çырса илнӗ. — ЧЛК, 13-мӗш тетр., 38 л.

**66.** 1971 ç. ЧР Муркаш р-чи Ятманра Т.А.Андриановран Л.Шапошников çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, III, 1840, 26 с.

**67.** 1971 ç. ЧР Çӗмӗрле р-чи Саватерте 60-ти Т.Н.Саеровран Т.В.Дмитриева çырса илнӗ. — ЧЛК, 17-мӗш тетр., 6 л. Вариант: Ашмарин, ЧСК, Х, 200 с.

**68.** 1985 ç. ЧР Канаш р-чи Шелттемре 50-ри М.А.Игнатьеваран И.В.Иванова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 64-мӗш тетр.

**69.** 1982 ç. ЧР Красноармейски р-чи Яманакра И.А.Патмартан А.Захарова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 64-мӗш тетр.

**70.** 1898—1900 çç. ТР Пӑва р-чи Элшелте Г.Т.Тимофеев çырса илнӗ пулмалла. — Ашмарин, ЧСК, Х, 203 с.

### Хӗвел

**71.** 1984 ç. ЧР Вӑрнар р-чи Ярмушкара Л.Маркова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 57-мӗш тетр.

**72.** «Октябрь ялавӗ» хаçатран. 1971, ноябрь 6, 134 №.

**73.** А.А.Трофимов академик тупса панӑ. В.П.Станьял чӑвашла куçарнӑ. С.Г.Соколован «Чувашское декоративно-прикладное искусство в системе подготовки учителя начальных классов и эстетическому воспитанию младшего школьника» ятлӑ вӗрентӳ кӗнекинчен. III, 2002, 30—31 с.

**74.** 1915 ç. ЧР Канаш р-чи Сухайкассинче А.Я.Аделеев çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 276, 188—189 с.

**75.** 1992 ç. ЧР Шупашкар р-чи Вӑрӑмтура 73-ри А.П. Петроваран С.Моисеева çырса илнӗ. — ЧЛК, 1992, 528-мӗш тетр.

**76.** 1911 ç. ЧР Çĕрпӳ р-чи Мăкăрта И.М.Рябчиков çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 179, 35 с.
**77.** Тимофеев, 67—68 с.
**78.** 1992 ç. ЧР Комсомольски р-чи Вăрманхĕрри Чурачăкра 82-ри А.Н. Соколовăран Г.П. Алексеева çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 518-мĕш тетр.
**79.** 1971 ç. ЧР Красноармейски р-чи Пшонкăра В.Д. Дмитриевăран Е.М. Маркова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1802, 2 с.
**80.** Никольский, 1928, 101 с.
**81.** 1920 ç. тĕлнелле ПР Пелепей р-чи Слакпуçĕнче Г.Комиссаров çырса илнĕ. 1926 ç. «Красная Башкирия» хаçатра вырăсла пичетленнĕ (октябрĕн 28-мĕшĕ, 248 №). — ЧПГĂИ ĂА, III, 213, 11 с.
**82.** 1974 ç. ЧР Шупашкар р-чи Куснарта 72-ри М.С. Яковлевăран Г.Ильина çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1272, 84 с.
**83.** 1910 ç. Самар облаçĕн Похвиçнĕ р-чи Çтухальте Е.Шамброткина çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 248, 58 с.
**84.** 1973 ç. ЧР Муркаш р-чи Чурикассинче М.Цветковăран Н.И.Егоров çырса илнĕ. — ЧСК, VI, 19 №.
**85.** 1971 ç. ЧР Патăрьел р-чи Кивĕ Ахпӳртре О.Ф.Кошкинăран В.А. Карягина çырса илнĕ.
**86.** 1989 ç. ЧР Красноармейски р-чи Туçи Чуракассинче О.Д.Григорьевăран Л.Г.Григорьева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 23-мĕш тетр.
**87.** 1974 ç. ЧР Шупашкар р-чи Шĕнерпуçĕнче Ю.Максимовăран З.Чернова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1282, 52 с.
**88.** 1908 ç. ЧР Патăрьел р-чи Аслă Патăрьелĕнче Г.Коккель çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 168, 323 с.

### Уйăх

**89.** 1993 ç. ЧР Шупашкар р-чи Станьялта 74-ри М.В. Моисеевăран С.Моисеева çырса илнĕ. — ЧЛК, 1993, 600-мĕш тетр.
**90.** ТР Çĕпрел р-чи Кивĕ Чакăра çырса илнĕ. Хăçан, кам çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, III, 177 с.
**91.** 1985 ç. ЧР Патăрьел р-чи Начар Упире 32-ри О.Ивановăран П.Семенов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 62-мĕш тетр.
**92.** 1936 ç. ЧР Красноармейски р-чи Сурăмхĕрринче И.В.Васильевăран И.А.Патмар çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 448, 17 с.
**93.** 1902 ç. ТР Пăва р-чи Элшелте Г.Т.Тимофеев çырса илнĕ—ЧПГĂИ ĂА, 26, 194—197 с.
**94.** 1993 ç. ЧР Йĕпреç р-чи Мерчĕкре 58-ти А.Майковран А.Исаков çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 2181, 112 с.
**95.** 1913 ç. Самар обл. Похвиçнĕ р-чи Кив Канккелте Н.Богданов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 246, 375 с. Автор асăрхаттарни пур: «Вăпăрĕ хăй хĕрарăмран пулнă теççĕ. Çав хĕрарăм ашшĕ-амăшĕ ылханса Усал (Вăпăр) пулса кайнă теççĕ».
**96.** 1928 ç. ТР Октябрь р-чи Кайттан ялĕнче В.Абрамова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 326, 209 с.
**97.** ЧР Çĕрпӳ р-чи Патăрьелте Г.Иванов çырса илнĕ. Ашмарин, ЧСК, III, 186 с. пичетленнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 29, 355 с.

### Çăлтăрсем

**98.** Архангельский, 487 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.
**99.** Н.И. Золотницкий, 1875, 159 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.
**100.** 1993 ç. ЧР Шупашкар р-чи Кăшавăшра Л.Эткерова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1993, 532-мĕш тетр.
**101.** 1900 ç. ТР Пăва р-чи Элшелте Г.Т.Тимофеев çырса илнĕ. — Тимофеев, 68—69 с.

**102.** 1911 ç. Самар обл. Клевлĕ р-чи Пайтуканпуçĕнче А.Липатов çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 207, 107 с.

**103.** 1900—1910 çç. ТР Пăва р-чи Элшел таврашĕнче Г.Т.Тимофеев çырса илнĕ. — Ашмарин, ЧСК, XIII, 19 с.

**104.** 1982 ç. ЧР Красноармейски р-чи Нимĕчкассинче 78-ти М.Т.Тимофееваран Э.Семенова çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кĕн. 6274 инв. №, 33-мĕш тетр.

**105.** 1978 ç. ЧР Элĕк р-чи Тавăтра А.Осипова çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, III, 1172, 1—2 с.

**106.** 1900—1910 çç. ЧР Шăмăршă р-чи Виçпӳрт Шăмăршăра çырса илнĕ. Кам çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, XIII, 19 с.

**107.** 1992 ç. ЧР Комсомольски р-чи Вăрманхĕрри Чурачăкра 82-ри Соколоваран Г.П.Алексеева çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 518-мĕш тетр.

**108.** 1900 ç. Самар обл. Исаклă р-чи Çĕн Якальте Х.Паасонен çырса илнĕ. — П.В.Денисов, 1959, 6 с.

**109.** 1928 ç. ТР Аксу р-чи Кив Саврăшра А.Семенова çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 308, 93—94 с.

**110.** 1955 ç. ЧР Ишлей р-чи Кипечкассинчи Мостар карчăкĕнчен Н. Сидоров çырса илнĕ. Анат Кĕнер шкулĕнчи «Вĕренӳшĕн» стена хаçатĕнче тухнă.

**111.** 1986 ç. ЧР Сĕнтĕрвăрри р-чи Чăнкассинче 78-ти А.Я. Яковлеваран Г.В.Киселева çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 55-мĕш тетр.

**112.** 1982 ç. ЧР Вăрнар районĕнчи Вăрманкассинче С.Краснов çырса илнĕ. — «Х.П.», 1982, 2 №, 7 с.

# II. ÇӲЛТИ ТĔНЧЕ

## ТУРĂСЕМПЕ ЫРĂСЕМ
## ÇӲЛТИ ХĂВАТСЕМ

**113.** 1888—1889 çç. ТР Пăва р-чи Пӳркелте И.Н.Юркин çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 57, 619 с.

**114.** 1780 ç. тĕлнелле Чĕмпĕр таврашĕнчи чăвашсенчен К.Милькович çырса илнĕ. — Милькович, 1906, 60-61 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**115.** 1988 ç. ПР Шаран р-чи Виççăлта И.Р.Жарковăран С.Макарова çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, III, 1045, 24—25 с.

**116.** 1981 ç. Пенза облаçĕнчи Сăрттанлă р-чи Питтĕпель ялĕнче комбайнерка Санюкран (А.Красноıщековăран) В.И.Дворниковпа В.П.Станьял çырса илнĕ. 10-мĕш класăн «Чăваш сăмахлăхĕ» (1993) кĕнекере пичетленнĕ.

**117.** 1890 ç. тĕлнелле ТР Пăва р-чи Кăнна Кушкинче çырса илнĕ. — А.Рекеев. 1896, 16 №, 1 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**118.** 1780 ç. тĕлнелле Чĕмпĕр таврашĕнчи чăвашсенчен К.Милькович çырса илнĕ. — Милькович, 1906, 60 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**119.** Çавăнтах. 53 с. ЧХС, 143 № пичетленнĕ. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**120.** 1902 ç. ЧР Куславкка р-чи Тĕрлемесре Г.Т.Тимофеев çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 8, 934—935 с.

**121.** 1896—1900 çç. ТР Çĕпрел р-чи Кив Чакăрта Г.Т.Тимофеев çырса илнĕ. — Ашмарин, ЧСК, XIV, 156 с.

**122.** 1913 ç. ТР Пăва р-чи Кăнна Кушкинче С.Сергеев çырса илнĕ. — I, 247 с.

**123.** Малтан 1919—1920 çç. Хусанта тухнă «Шурăмпуç» журналта пичетленнĕ. — Н.И. Ашмарин. ЧСК, XIV, 156 с.

**124.** 1900 ç. Самар обл. Исаклă р-чи Çĕн Якальте Х.Паасонен çырса илнĕ. ЧХС, VI, 148 №, пичетленнĕ. — Паасонен, 232.

**125.** 1906—1907 çç. Д.Месарош çырса илнĕ. Ăçта çырни паллă мар. — ЧПГӐИ ӐА, IV, 714, 18 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**126.** 1974 ç. Шупашкар р-чи Шемшерпе Шĕнерпуç таврашĕсенче Н.К. Семенова çырса илнĕ. — ЧПГӐИ ӐА, III, 1305, 17 с.

**127.** 1913 ç. Самар обл. Похвиçнĕ р-чи Çтухальте Е.Шамброткина çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 243, 138—141 с.

**128.** 1982 ç. ЧР Красноармейски р-чи Тусайра 61-ри М.Захаровăран В.Алексеева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 31-мĕш тетр.

**129.** 1992 ç. ЧР Шупашкар р-чи Вăрăмтура 73-ри А.П.Петровăран С.Моисеева çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 528-мĕш тетр.

**130.** 1880 ç. тĕлнелле ЧР Сĕнтĕрвăрри р-чи Урхас Кушкăра В.Я.Смелов çырса илнĕ. — Магницкий, 253—255 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**131.** 1992 ç. ЧР Шупашкар р-чи Етĕрнекассинче 82-ри А.А.Липовăран Н.Васильева çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 531-мĕш тетр.

**132.** 1912 ç. ЧР Тăвай р-чи Сăкăтпуç ялĕнче Т.Максимов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 231, 394 с.

**133, 134.** 1880—1889 çç. ТР Пăва р-чи Кăнна Кушкинче А.В. Рекеев çырса илнĕ. — Рекеев. 1896, 2, 4. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**135.** 1911 ç. Самар обл. Клевлĕ р-чи Йĕкер ялĕнче А.Сенчуков çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 207, 367 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**136.** 1926 ç. ЧР Çĕрпӳ р-чи Чурачăкра Д.Филимонов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 44—45, 71—72 с.

**137.** 1914 ç. ЧР Канаш р-чи Сухайкассинче А.Я.Аделеев çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 251, 302—303 с.

**138.** 1888—1889 çç. ТР Пăва р-чи Пӳркелте И.Н.Юркин çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 57, 620—621 с.

**139.** Никанор, 535 с. Вырăсларан А.А.Ефимова куçарнă.

**140.** 1992 ç. Самар обл. Шунтал р-чи Чăтăрла ялĕнче 78-ти Н.К.Кирилловăран О.Мрясова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 602-мĕш тетр.

**141.** Земляницкий, 1909. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**142.** 1977 ç. ЧР Хĕрлĕ Чутай р-чи Шулю ялĕнче М.Д.Инедеркина çырса илнĕ. — III, 753, 77—79.

**143.** 1982 ç. ЧР Красноармейски р-чи Тусайра М. Захаровăран В.Алексеева çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 31-мĕш тетр.

**144.** 1884 ç. «Русская мысль» журналăн 1-мĕш №-че И.Красноперов çырнă «Самарские чуваши» статйинче пичетленнĕ. — «Русская мысль», 1884, 1 №, 50—51 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**145.** 1913 ç. Самар обл. Шунтал р-чи Емелкке Таяпинче Н.Богданов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 246, 377—379 с.

**146.** 1888—1889 çç. ТР Пăва р-чи Пӳркелте И.Н.Юркин çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 57, 625—627 с.

**147.** Г.Ф. Юмарт тĕпчевçĕ архивĕнчен илнĕ.

**148.** 1902 ç. ЧР Элĕк р-чи Шĕмшешре К.Степанов çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 5, 122 с.

**149.** 1974 ç. ЧР Шупашкар р-чи Шĕнерпуçĕнче Н.Е.Емельяновран Н.К. Семенова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1305, 16 с.

**150.** 1900—1910 çç. Ульяновск обл. Чăнлă р-чи Вăта Тимĕрçен таврашĕнче çырса илнĕ. Кам çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, VIII, 283 с.

**151.** 1915 ç. ЧР Канаш р-чи Сухайкассинче А.Я. Аделеев çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 276, 151 с.

### Пӳлĕхпе Пӳлĕхçĕ

**152.** 1992 ç. ЧР Патăрьел р-чи Патăрьелĕнче Е.Жеребцова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, 12 йыш. кĕн., 6274 инв. №, 525-мĕш тетр.

**153.** ЧР Етĕрне р-чи Яккушкăньре çырса илнĕ. Кам, хăçан çырни паллă мар. — Ашмарин, ЧСК, X, 80 с.

**154.** 1938 ç. ТР Пăва р-чи Пӳркелте илтнине И.Н.Юркин çырса хунă. — ЧПГĂИ ĂА, I, 67, 195—196 с.

**155.** 1888—1889 çç. ТР Пăва р-чи Пӳркелте И.Н.Юркин çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 57, 622—623 с.

**156.** 1992 ç. ЧР Шупашкар р-чи Етӗрнекассинче А.А. Липоварăн Н.Васильева çырса илнӗ. — ЧЛК, 1992, 531-мӗш тетр.

**157.** 1911 ç. Ульяновск обл. Чӑнлӑ р-чи Пухтелте П.Тятуков çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 213, 455—457 с.

**158.** 1992 ç. ЧР Елчӗк р-чи Тӑрӑм ялӗнче 70-ти Г.К.Даниловран Т.Баймушкина çырса илнӗ. — ЧЛК, 1992, 570 тетр.

**159.** ЧР Вӑрмар р-чи Çиçтӗпере çырса илнӗ. Кам, хăçан çырни паллă мар. Малтан ЧСК, унтан ЧХС, VI, 150 № пичетленнӗ. — Ашмарин, ЧСК, X, 79 с.

**160.** 1983 ç. ЧР Элӗк р-чи Тенияленче Е.Ермининăран А.Илларионова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 4-мӗш тетр.

### Пихампар

**161.** ЧР Çӗрпӳ р-чи Патӑрьелӗнче Г.Комиссаров çырса илнӗ. Хăçан çырни паллă мар. — ЧПГӐИ ӐА, III, 2206, 3 с.

**162.** 1888—1889 çç. ТР Пӑва р-чи Пӳркелте И.Н.Юркин çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 57, 624 с.

**163.** 1992 ç. ЧР Елчӗк р-чи Тӑрӑмра Н.Д.Богдановаран Т.Баймушкина çырса илнӗ. — ЧЛК, 1992, 570-мӗш тетр.

**164.** 1915 ç. ЧР Канаш р-чи Сухайкассинче А.Я.Аделеев çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 276, 253 с.

**165.** 1992 ç. ЧР Шупашкар р-чи Етӗрнекассинче 82-ри А.А. Липоварăн Н.Васильева çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 531-мӗш тетр.

**166.** ТР Пӑва р-чи Кăна Кушкинче А.Рекеев çырса илнӗ. Хăçан çырни паллă мар. — Рекеев, 1896, 4 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**167.** Никанор, 1909, 534 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**168.** 1928 ç. тӗнелле ТР Лениногорск р-чи Çӗнӗ Шешкелпе Çарăмсан р-чи Кивӗ Шешкел ялӗсенче М.Николаева çырса илнӗ. — ЧПА, 334 ф., 2 оп., 21, 64 л. Вырăсларан В.П. Станьял куçарнă.

**169.** 1987 ç. ЧР Тӑвай р-чи Анаткас Тушкил ялӗнче 79-ти Т.Тимаковăран Т.Абзова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 37-мӗш тетр.

**170.** 1979 ç. Самар обл. Исаклă р-чи Аслă Микушкелте çуралса ӳснӗ 68-ти А.И. Минеевăран çырса илнӗ. — Г.Юмартăн килти архивӗнчен.

**171.** 1988 ç. ПР Эльшей р-чи Кайраклă ялӗнче С.П.Евстафьевăран С.Максимова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, III,1046, 14 с.

### Кепе

**172.** 1880 ç. тӗлнелле ТР Пӑва р-чи Кӑнна Кушкинче А.В. Рекеев çырса илнӗ. — Рекеев, 1898. 4—5 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**173.** 1888—1889 çç. ТР Пӑва р-чи Пӳркелте И.Н.Юркин çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 57, 623—624 с.

**174.** Амаксар типтерӗ. 1958 ç., XI—XII. Мустар карчӑкӗнчен Кипечкассинче çырса илнӗ. В.П.Станьял якатнă.

**175.** 1910 ç. тӗлнелле Степанов çырса илнӗ. Хăçан, ăçта çырни паллă мар. — ЧПГӐИ ӐА, I, 167, 147—149 с.

**176.** 1982 ç. ЧР Красноармейски р-чи Яманакра И.А.Патмартан А.Захарова çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, 12 йыш. кӗн., 6274 инв. №, 64-мӗш тетр.

### Пирӗшти

**177, 178.** 1886—1890 çç. ТР Пӑва р-чи Кӑнна Кушкинче А.В.Рекеев çырса илнӗ. — Рекеев, 1898, 3 с. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.

**179.** 1898 ç. ЧР Муркаш р-чи Туçи Олкашра çырса илнӗ. Кам çырни паллă мар. — ЧПГӐИ ӐА, I, 21, 204 с.

**180.** 1911—1912 çç. ЧР Патӑрьел р-чи Тӗрӗньелӗнче Л.Ф.Пайминов çырса илнӗ. — ЧПГӐИ ӐА, I, 217, 526 с.

**181.** Никанор, 1909, 534 с. Вырăсларан В.П. Станьял куçарнă.
**182.** 1992 ç. Ульяновск обл. Чăнлă р-чи Анат Тимĕрçенте З.Стюковăран С.Аппанова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 542-мĕш тетр.
**183.** 1903 ç. Т.Исаев çырса илнĕ. Ăçта çырни паллă мар. — ЧПГĂИ ĂА, I, 6, 229 с.
**184.** 1888—1889 çç. ТР Пăва р-чи Пӳркелте И.Н.Юркин çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, I, 57, 625 с.
**185.** 1974 ç. ЧР Шупашкар р-чи Шешкенерте В.П.Прокопьевран З.Н.Коновалова çырса илнĕ. — ЧПГĂИ ĂА, III, 1306, 69 с.
**186.** Месарош. — IV, 714, 25. Вырăсларан В.П.Станьял куçарнă.
**187.** 1992 ç. ЧР Патăрьел р-чи Патăрьелте 56-ри Р.Ресметовăран С.Викторова çырса илнĕ. — ЧЛК, 1992, 525-мĕш тетр.
